# Чăвашла - Иисус Христос Хуçамăр

## Chuvash New Testament

© Institute for Bible
Translation, Moscow
(Институт перевода
Библии)

This Bible is copyrighted by Institute for Bible Translation, Moscow (ibtrussia.org) and is provided with permission at the cost of printing by the Digital Bible Society (dbs.org). This translation is made available to you under the terms of the Creative Commons Attribution-Noncommercial-No Derivatives license 4.0.

This Bible, and many others, are available for free download in a variety of digital formats at dbs.org/bibles.

*Language:*
*Country:*
*Publisher:*
*Copyright: © Institute for Bible Translation, Moscow (Институт перевода Библии)*
*Last Updated: 2023-10-20*
*ID: 7996be08-00d5-4b97-bf93-6b92deb59d02*
*ISO: chv*
*ISBN:*

Матфей .......... 4
Марк .......... 32
Лука .......... 49
Иоанн .......... 77
Апостолсен ĕçĕ-хĕлĕ .......... 98
Римсем патне .......... 125
Коринфсем патне 1-мĕш .......... 136
Коринфсем патне 2-мĕш .......... 147
Галатсем патне .......... 154
Ефессем патне .......... 158
Филиппăсем патне .......... 162
Колоссăсем патне .......... 165
Фессалоникисем патне 1-мĕш .......... 168
Фессалоникисем патне 2-мĕш .......... 171
Тимофей патне 1-мĕш .......... 173
Тимофей патне 2-мĕш .......... 177
Тит патне .......... 180
Филимон патне .......... 182
Еврейсем патне .......... 183
Иаков çырăвĕ .......... 191
Петрăн 1-мĕш .......... 194
Петрăн 2-мĕш .......... 197
Иоанăн 1-мĕш .......... 199
Иоанăн 2-мĕш .......... 202
Иоанăн 3-мĕш .......... 203
Иуда çырăвĕ .......... 204
Апокалипсис .......... 205

# Матфей

Сирĕн алăра – Çĕнĕ Халалăн чăвашла çĕнĕ куçарăвĕ. Паянхи кунччenех чи нумай çын вулакан Кĕнекесен Кĕнеки – Библи – Çĕнĕ Халалпа Авалхи Халал пайсенчен тăрать.
Çĕнĕ Халала 27 кĕнеке кĕрет. Вăл историллĕ текен пайпа – тăватă кĕнекерен тăракан Евангелипе – пуçланать. Грекларан куçарсан «Евангелие» тени «Ырă Хыпар» тени пулать. Шăпах çапла ят панă та Хăйĕн вĕрентĕвне Турă Суйласа илнĕ Иисус Христос. Вăл этемлĕхе çылăхпа вилĕм тыткăнĕнчен хăтарнă. Ырă Хыпарта Унăн çĕр çинчи пурăнăçĕ çинчен каласа панă, – Çурални тата Турăшăн ĕçлесе тăни çинчен, Унăн вĕрентĕвĕпе Вăл тунă хăватсем çинчен, Унăн вилĕмĕпе Вăл чĕрĕлсе тăни çинчен. Тăватă Евангели те çак ĕç-пуçсене тĕрлĕ енчен çутатса параççĕ, Христос вĕрентĕвĕн тĕшшине лайăххрах ăнланса илме пулăшаççĕ. Ырă Хыпарăн авторĕсем Матфей, Марк, Лука тата Иоанн çак ĕç-пуçсене куçăн куракансем пулнă, Матфейпа Иоанн Христосăн вун икĕ вĕренекенĕ шутне кĕнĕ; Лукапа Марк вара апостол тивĕçĕсене каярахпа туса пыма пуçланă. Иисус Христос çинчен мĕн-мĕн паллă пулнине туллин те хронологи йĕркипе çырса парса евангелистсем Унăн вĕрентĕвне истори тĕлĕшĕнчен çирĕп сăлтавланă.
Иисус Христос çинчен калакан Ырă Хыпар мĕнле сарăлни пирки Çĕнĕ Халалăн тепĕр кĕнеки – Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ – каласа парать. Тĕрĕссипе, вăл тăватă Евангелин малалли пайĕ пулса тăрать. Ку кĕнеке Христос тӳпене çĕкленнипе пуçланать те Аллăмĕш кун уявĕнче апостолсем çине Святой Сывлăш анни Христос Чиркĕвне никĕслес ĕçре юлашки чул хунипе пĕр пулни çинчен каласа парать. Кунтах эпир тĕрлĕ хуласемпе çĕр-шывсенче Христоса ĕненессин вăрлăхне акакан апостолсен ĕçĕ-хĕлĕпе паттăрлăхĕ çинчен вуласа пĕлетпĕр. Христианлăхăн малтанхи çулĕсенче пулса иртнĕ ĕçсене сăнласа панăран ку кĕнеке уйрăммăнах истори тĕлĕшĕнчен паха. Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ кĕнеке авторĕ – Лука евангелист.
Çĕнĕ Халала апостолсен çырăвĕсем те кĕреççĕ, пурĕ 21 çыру, вĕсенчен ытларахăшне (14) Павел апостол çырнă. «Мĕн пур ĕненекенсем патне янисем» текен тепĕр çиччĕшне тĕрлĕ апостолсем çырнă: иккĕшне – Петр апостол, виççĕшне – Иоанн апостол, Иаков апостолпа Иуда апостол пĕрер çырнă. Кашни çырăвĕнчех ăна кам патне çырнине кăтартнă, çырусене христиансен ушкăнĕсене е уйрăм çын патне янă.
Çырусенче христианлăх ĕненĕвĕпе пурăнăçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене хускатнă – кунта турсăмахлăх ыйтăвĕсем те, кулленхи пурăнăç ыйтăвĕсем те пур – вĕсенче усăллă канашсемпе ӳкĕтсем те тăтăшах тĕл пулаççĕ. Вăл вăхăтри ĕненекенсене, христианлăх пурăнăçĕн опычĕ питĕ сахал пулнă пирки, апостолсен ăслă сăмахĕ питех те кирлĕ пулнă. Унтанпа икĕ пин çула яхăн иртнĕ пулин те, паянхи кун та Çырусенче каланисем кивелмен, вĕсем хальхи саманара пурăнакансене те нумай вĕрентме пултараççĕ.
Çĕнĕ Халалăн юлашки кĕнеки – Турă сăваплă Иоанн Турсăмахçăна малашнехине уçса пани (грекла «Апокалипсис») – пророкла кĕнеке. Ăна вулама ансат мар, ку кĕнекере сăнарсем йышлă, вĕсем урлă этемлĕх историйĕнчи Турă пуррин вăрттăнлăхне уçса панă; тĕнчене Турă суд тăвасси çинчен, юлашки кунсенче Христос Чиркĕвĕн шăпи епле пуласси çинчен каласа панă. Апокалипсис кĕнекен авторĕ – Иоанн Турсăмахçă апостол, вăлах Евангелисенчен пĕрин тата апостолсен виçĕ Çырăвĕн авторĕ. I ĕмĕр вĕçĕнче, христиансене пусмăрланă тапхăрта, Иоана ытти хăш-пĕр ĕненекенсемпе пĕрле Патмос утравĕ çине яраççĕ. Çавăнта ăна Турă, курăну кăтартса, малашне мĕн пулассине уçса панă: Христос Чиркĕвĕ, вăхăтлăха çĕмĕрсе тăкнă пулин те, Турă пулăшнипе тата Путек Юнĕпе тĕттĕмлĕх вăйĕсене çĕнтермелле, вара çак тĕнчене «çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕр» текен лайăххрах та ĕмĕрлĕх тĕнче ылмаштармалла. Хăйне мĕн курăннине Иоанн йăлтах çырса хунă, тем тери йывăр саманара та ĕненекенсем «Апокалипсиса» вуласа тĕреклĕх илеççĕ.
Çĕнĕ Халала авалхи грек чĕлхипе çырнă, ăна алă вĕççĕн нумай-нумай хутчен çыра-çыра илнĕ. Çак сăлтава пула грекла çырнă Çĕнĕ Халалăн тĕрлĕрен ал çырăвĕсем пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăраççĕ. Çапах та уйрăмлăхсенчен чылайăшĕ тĕп шухăша улăштармаççĕ, авалхи ытти ал çырусемпе танлаштарсан, Çĕнĕ Халал тексчĕсем пĕр-пĕринчен ытлах уйăрăлса тăмаççĕ.
Чăвашла куçарăвăн тексчĕ вырăсла Синод куçарăвĕн тексчĕ çинче никĕсленет. Çĕнĕ Халалăн чи авалхи ал çырăвĕсем хăш-пĕр тĕлте Синод куçарăвĕнчен урăхларах. Кунашкал чухне вулакансем текстсем хушшинчи уйрăмлăхсене сноскăра тупма пултараççĕ.
Çĕнĕ Халал куçарăвĕнче вулакана пулăшма сыпăксене пĕчĕкрех пайсем çине уйăрнă, вĕсене ят панă. Çак ятсем айĕнче, скобкăра, ытти Евангелисенче тĕл пулакан пĕрешкелтерех вырăнсене кăтартнă. Унсăр пуçне, сноскăсенче хăш-пĕр йывăртарах сăмахсене ăнлантарса панă.

Кĕнеке вĕçĕнче Çĕнĕ Халал куçарăвĕнче тĕл пулакан, ăнлантарма тивĕçлĕ хăш-пĕр чи кирлĕ сăмахсемпе сăмах çавăрăнăшĕсене ăнлантарса панă глоссарий пур. Кунта çакна асăрхаттармалла: вăхăт иртнĕçемĕн хăш-пĕр сăмахсен пĕлтерĕшĕ улшăннă, словарьте вĕсен Çĕнĕ Халала çырнă вăхăтри пĕлтерĕшне илсе панă. Кĕнеке вĕçĕнче çавнашкалах Çĕнĕ Халал вăхăтĕнчи Палестинăпа Çывăх Хĕвел тухăç карттисене тата Библири ĕç-пуçсем пулса иртнĕ вырăнсен сăн ÿкерчĕкĕсене илсе панă.
Лайăх пахалăхлă куçару туса çитерме тата оригинал-текст шухăшне тĕрĕс палăртма куçару темиçе тĕрĕслев витĕр тухать. Библи текстне нумай чĕлхене куçарнă май тĕрĕслев меслечĕсем çирĕпленсе çитнĕ ĕнтĕ. Грекла текста ăнлантарнă чухне чăвашла куçару (Библи куçарăвĕн институчĕн ытти кăларăмĕсем пекех) пĕтĕм тĕнчере йышăннă стандарта пăхăнать. Хăш-пĕр вырăнта, текста темиçе тĕрлĕ те ăнлантарни тĕл пулнă чухне, пĕр вариантне кăна суйласа илнĕ.
Çĕнĕ Халала икĕ пин çула яхăн ĕлĕкрех çырнă. Çав вăхăтранпа ăна тĕнчери йышлă тата вак çĕршер халăх чĕлхине куçарнă; Библие куçарнă чĕлхесен шутĕнче чăваш чĕлхи те пур. Сăваплă Çырнине чăвашла куçарнин историйĕ самаях анлă. Чăвашла куçарнă христианлăх кĕнекисем 1800-мĕш çултан пичетленсе тухма пуçлаççĕ, чăвашла тăвату Евангели вара 1820-мĕш çулта Хусанта кун çути курать. Кивĕ чăваш çырулăхĕ анчахрах йĕркеленме тытăннă пирки ку куçарусенче нумай çитменлĕх тупма пулать ĕнтĕ, анчах та çакна манар мар: малтанхи чăвашла Евангелие мĕн пур чăваш прихучĕсене салатнă, ерипен пулин те, Библин тĕп ăнлавĕсем йĕркеленме пуçланă, чăваш чĕлхи чиркÿ чĕлхи те пулас çул çине тăнă. Хальхи вăхăтра çак Евангели кивĕ чăваш çырулăхĕн палăкĕ шутланать.
XIX ĕмĕр вĕçĕнче çĕнĕ чăваш çырулăхĕ пуçланса каять. Ăна пуçарса яраканĕ – çутта кăларакан ăмăр Иван Яковлевич Яковлев (1848-1930 çç.). Вăл 1873-1890-мĕш çулсенче Евангелин уйрăм кĕнекисене чăвашла куçарса пичетлет. 1890-мĕш çулта вара тăватă Евангели кун çути курать. Тулли Çĕнĕ Халал 1911-мĕш çулта Чĕмпĕрте «Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă сăмах» ятпа пичетленсе тухать. Çапла майпа, Иван Яковлевич Яковлев пархатарне пула, чăвашсем Турă Сăмахне тăван чĕлхепе вулама пуçлаççĕ.
1872-1917-мĕш çулсенче чăвашла тухнă христианлăх кĕнекисен шучĕ 439 кĕнекене çитет, чăваш чĕлхи чиркÿ чĕлхи те пулса каять. Хальхи вăхăтра Шупашкар тата Чăваш епархийĕнчи чиркÿсенчен ытларахăшĕнче кĕлĕсене чăвашла ирттереççĕ.
Библие чăвашла куçарас ĕç XX ĕмĕр вĕçнелле çĕнĕрен вăй илет. Ку ĕçре Библи куçарăвĕн институчĕн тÿпи питĕ пысăк. Паянхи кунччен Библи куçарăвĕн институчĕ, репринтлă кăларăмсене шута илмесен, Сăваплă Çырнин çак çĕнĕ куçарăвĕсене чăвашла пичетлесе кăларнă: «Лука пĕлтернĕ Ырă Хыпар» (1999 ç.), «Ырă Хыпар» (2001 ç.), «Ача-пăча Библийĕ» (2006 ç.) тата ытт. те.
Çак çĕнĕ куçарăва эпир халиччен пичетленсе тухнă ытти куçарусенчен чаплăрах тесшĕн мар. Калăпăр, И. Я. Яковлев куçарăвне пурте аван пĕлеççĕ, тивĕçлĕ хак параççĕ, унпа чиркÿсенче усă кураççĕ. Сирĕн алăри çак кĕнекене вара ятарласа килте вулама хатĕрленĕ; эпир паянхи вулакана Библире пытарăннă пахаран та паха пуянлăхпа хальхи литература чĕлхипе паллашма майсем туса парас терĕмĕр.
Библи куçарăвĕн институчĕ Çĕнĕ Халалăн чăвашла куçарăвĕпе чылай çул хушши ĕçленĕ куçаруçăпа редакторсене тата çак текста пичетлесе кăларма пулăшакансене пурне те чун-чĕререн тав тăвать.

## Библи куçарăвĕн институтĕнче ĕçлекенсем

*Иисус Христосăн йăх тымарĕ*
(Лк. 3:23-38)

1 Авраампа Давид йăхĕнчен çуралнă Иисус
Христосăн йăх-несĕл тымарĕ. 2 Авраам ачи
Исаак пулнă; Исаак ачи – Иаков; Иаков ачисем
Иудăпа унăн пĕртăванĕсем пулнă; 3 Иуда ачисем –
Фареспа Зара, вĕсен амăшĕ Фамарь пулнă. Фарес
ачи – Есром, Есром ачи Арам пулнă; 4 Арам ачи –
Аминадав; Аминадав ачи – Наассон; Наассон ачи
Салмон пулнă. 5 Салмон ачи – Вооз, унăн амăшĕ
Рахава пулнă. Вооз Овид ашшĕ пулнă, Овид амăшĕ
Руфь пулнă. Овид ачи Иессей пулнă; 6 Иессей ачи
Давид патша пулнă; Давид ачи – Соломон, Соломон
амăшĕ малтан Урия арăмĕ пулнă; 7 Соломон ачи –
Ровоам, Ровоам ачи – Авия, Авия ачи Аса пулнă;
8 Аса ачи – Иосафат, Иосафат ачи – Иорам, Иорам
ачи Озия пулнă; 9 Озия ачи – Иоафам, Иоафам ачи
– Ахаз, Ахаз ачи Езекия пулнă. 10 Езекия ачи –
Манассия, Манассия ачи – Амон, Амон ачи Иосия
пулнă; 11 Иосия ачи – Иоаким; Израиль халăхне
Вавилона куçарса каяс умĕн Иоакимран Иехонияпа
унăн пĕртăванĕсем çуралнă.
12 Вавилона куçарса кайнă хыççăн Иехонияран
Салафииль çуралнă; Салафииль ачи Зоровавель
пулнă; 13 Зоровавель ачи – Авиуд, Авиуд ачи –
Елиаким, Елиаким ачи Азор пулнă; 14 Азортан Садок
çуралнă; Садок ачи – Ахим, Ахим ачи Елиуд пулнă;
15 Елиудран Елеазар çуралнă; Елеазар ачи – Матфан,

Матфан ачи Иаков пулнӑ; 16 Иаковран Марийан
упӑшки Иосиф ҫуралнӑ, Мария вара Христос теекен
Иисуса ҫуратнӑ.
17 Ҫапла вара Авраамран пуҫласа Давида
ҫитиччен пурӗ вун тӑватӑ сыпӑк. Давидран пуҫласа
Вавилона куҫарса кайиччен те вун тӑватӑ сыпӑк.
Вавилона куҫнинчен пуҫласа Христос ҫураличчен
те вун тӑватӑ сыпӑк.

*Иисус Христос ҫурални*

(Лк. 2:1-7)

18 Иисус Христос ҫурални вара акӑ ҫапла пулса
иртнӗ: Иисус Амӑшне, Марияна, Иосиф валли
ҫураҫсан, вӗсем пӗрле пурӑнма пуҫличченех,
Святой Сывлӑш хӑвачӗпе Марийан ҫие юлнӑ. 19 Унӑн
пулас упӑшки Иосиф тӳрӗ пурӑнакан ҫын пулнӑ.
Вӑл, Марийан ятне ярас мар тесе, сас-хура
кӑлармасӑр Ӑна пӑрахма шут тытнӑ. 20 Анчах та вӑл
ҫапла шухӑшласанах ӑна тӗлӗкре Хуҫа Туррӑмӑрӑн
ангелӗ курӑннӑ. «Давид патша йӑхӗнчи Иосиф, –
тенӗ Турӑ ангелӗ, – эсӗ арӑмна, Марияна, ху патна
илме ан хӑра, Вӑл Святой Сывлӑш хӑвачӗпе йывӑр
ҫын пулнӑ. 21 Вӑл Ывӑл Ача ҫуратӗ, эсӗ ҫав Ачана
Иисус ятлӑ хурӑн, мӗншӗн тесен Вӑл Хӑйӗн халӑхне
ҫылӑхӗсенчен ҫӑлӗ». 22 Ҫак ӗҫсем Хуҫа Турӑ пророк
урлӑ калани пурнӑҫланмашкӑн пулса иртнӗ,
пророк ҫапла каланӑ пулнӑ: 23 «Акӑ Хӗр йывӑр ҫын
пулса Ывӑл Ача ҫуратӗ, Ӑна Еммануил ятлӑ хурӗҫ».
Еммануил тени «Турӑ пирӗнпе» тенине пӗлтерет.
24 Иосиф ыйхӑран вӑраннӑ. Унтан вӑл, Хуҫа
Туррӑмӑрӑн ангелӗ хушнӑ пекех, арӑмне хӑй патне
илнӗ. 25 Анчах вӑл Марияпа ҫывӑрман. Пурӑна-киле
Мария Хӑйӗн пӗртен-пӗр Ывӑлне ҫуратнӑ. Иосиф
Ӑна Иисус ятлӑ хунӑ.

## Ӑсчахсем пуҫҫапма пыни

2 Ирод патша вӑхӑтӗнче, Иудейӑри Вифлеем
хулинче Иисус ҫуралсан, хӗвел тухӑҫӗнчи
ӑсчахсем Иерусалима пынӑ та халӑхран ҫапла
ыйтнӑ: 2 «Иудейсен Патши пулма ҫуралнӑ Ача ӑҫта-
ши? Ӗнтӗ эпир хӗвел тухӑҫӗнче Унӑн ҫӑлтӑрне
куртӑмӑр та Ӑна пуҫҫапма килтӗмӗр». 3 Ҫакна
илтсен Ирод патша та, пӗтӗм Иерусалим ҫыннисем
те аптӑраса ӳкнӗ. 4 Вара Ирод аслӑ священниксене,
халӑха Моисей саккунне вӗрентекенсене пурне те
пухнӑ та: «Христосӑн ӑҫта ҫуралмалла?» – тесе
тӗпчесе ыйтнӑ. 5 «Иудейӑри Вифлеем хулинче, –
тенӗ ӑна вӗсем, – мӗншӗн тесен Турӑ пророка ҫапла
ҫыртарнӑ: 6 „Эсӗ те, Вифлеем, Иуда ҫӗрӗ, Иудӑн аслӑ
хулисенчен нимӗнпе те кая мар: мӗншӗн тесен
санӑн ҫыннусенчен Ҫулпуҫӗ тухӗ, Вӑл Манӑн
халӑхӑн, Израиль халӑхӗн, Кӗтӳҫи пулӗ“».
7 Вара Ирод ӑсчахсене вӑрттӑн чӗнсе илтерсе
вӗсенчен ҫав ҫӑлтӑр курӑннӑ тӗрӗс вӑхӑта ыйтса
пӗлнӗ. 8 «Кайӑр та пӗчӗк Ача ҫинчен тӗплӗн
тӗпчесе ыйтса пӗлӗр. Ӑна тупсан вара мана килсе
калӑр, эпӗ те кайса пуҫҫапам Ӑна», – тенӗ Ирод
вӗсене Вифлеем хулине кайма хушса. 9 Патша
хушнине итлесе ӑсчахсем кайнӑ. Ҫул ҫинче каллех
хайхи хӗвел тухӑҫӗнче асӑрханӑ ҫӑлтӑр курӑннӑ.
Ҫав ҫӑлтӑр вӗсем умӗнче куҫса пынӑ-пынӑ та,
пӗчӗк Ача тӗлне ҫитсен, тӑпах чарӑннӑ. 10 Ҫӑлтӑра
курсан вӗсем питӗ савӑнса-хӗпӗртесе кайнӑ. 11 Вара
пӳрте кӗнӗ те пӗчӗк Ачапа Унӑн Амӑшне Марияна
курнӑ. Вӗсем Ачана чӗркуҫленсех пуҫҫапнӑ, унтан
хутаҫӗсенчен кӑларса Ӑна ылтӑн, ладан, смирна
парнеленӗ. 12 Каярахпа Турӑ вӗсене тӗлӗк кӑтартса
Ирод патне тавӑрӑнма юраманни ҫинчен
пӗлтернӗ. Вара ӑсчахсем хӑйсен ҫӗрне урӑх ҫулпа
тавӑрӑннӑ.

## Египета тарни

13 Ӑсчахсем кайсан Хуҫа Туррӑмӑрӑн ангелӗ
Иосифа тӗлӗкре курӑнса ҫапла каланӑ: «Тӑр та
пӗчӗк Ачапа Амӑшне илсе Египет ҫӗр-шывне тар.
Эпӗ систериччен ҫавӑнтах пурӑн, мӗншӗн тесен
Ирод пӗчӗк Ачана шыраса тупса вӗлерттересшӗн».
14 Иосиф тӑнӑ та пӗчӗк Ачапа Унӑн Амӑшне илсе
ҫӗр варринчех Египета тухса кайнӑ; 15 вара Ирод
виличченех унта пурӑннӑ. Ҫапла Хуҫа Турӑ пророк
урлӑ: «Ывӑлӑма Эпӗ Египетран чӗнсе илтӗм», – тесе
калани пурнӑҫланнӑ.

## Ирод пӗчӗк ачасене вӗлерттерни

16 Ӑсчахсем хӑйне улталанине ӑнланса илсен
Ирод пит ҫилленсе кайнӑ. Вара вӑл, ӑсчахсенчен
тӗпчесе пӗлнӗ вӑхӑт тӑрӑх, Вифлеемпа унӑн
таврашӗнче ҫуралнӑ иккӗри тата икӗ ҫултан
кӗҫӗнрех пӗчӗк ачасене пурне те вӗлерсе тухма
хушнӑ. 17 Ҫапла майпа Турӑ Иеремия пророк урлӑ
калани пурнӑҫланнӑ. Вӑл ҫапла каланӑ пулнӑ:
18 «Рама хулинче сасӑпах макӑрни, хыттӑн ӳлени,
татӑлса йӗни илтӗнет. Ку вӑл ачисем ҫукран
лӑпланаймасӑр йӗрекен Рахиль сасси».

## Египетран Назарета тавӑрӑнни

19 Ирод вилсен вара Египетра Хуҫа Туррӑмӑрӑн
ангелӗ Иосифа тӗлӗкре курӑннӑ та 20 ҫапла каланӑ:
«Ача чунне шыракансем вилчӗҫ ӗнтӗ, ҫавӑнпа тӑр
та, Ачапа Амӑшне илсе, Израиль ҫӗрне кай».
21 Иосиф тӑнӑ та, Ачапа Амӑшне илсе, Израиль
ҫӗрне тавӑрӑннӑ. 22 Анчах та Иудейӑра Ирод ывӑлӗ
Архелай ашшӗ вырӑнӗнче патшара ларнине
пӗлсен Иосиф унта тавӑрӑнма шикленнӗ. Вара,
Турӑ хӑйне тӗлӗкре пӗлтернине итлесе, Галилейӑна
кайнӑ. 23 Унта вӑл хӑйӗн ҫемйипе Назарет ятлӑ
хулара пурӑнма пуҫланӑ. Ҫапла Турӑ пророксем
урлӑ: «Турӑ Суйласа илнине Назорей тейӗҫ», – тесе
калани пурнӑҫланнӑ.

*Шыва кӗртекен Иоанн ӳкӗтлесе вӗрентни*

(Мк. 1:1-8; Лк. 3:1-9, 15-17; Ин. 1:19-28)

3 Ҫав кунсенче Шыва кӗртекен Иоанн халӑх
хушшине тухнӑ, вӑл Иудея пуш хирӗнче
ӳкӗтлесе вӗрентнӗ. 2 «Ҫӳлти Патшалӑх ҫывхарчӗ
ӗнтӗ, ҫавӑнпа та ӳкӗнӗр», – тенӗ вӑл ҫынсене.
3 Исаия пророках ун ҫинчен ҫапла каланӑ пулнӑ:

«Пуш хирте чӗнекенӗн сасси илтӗнет: „Хуçамӑр
валли çул хатӗрлӗр, Вӑл утас çулсене тӳрлетӗр!“»
4 Çӳрессе Иоанн тӗве çӑмӗнчен тунӑ тумтир
тӑхӑнса, пилӗкне чӗн пиçиххи çыхса çӳренӗ. Çиессе
вӑл хӗрлӗ шӑрчӑк тата хӑвӑлсенче тупкаланӑ пыл
çисе пурӑннӑ. 5 Ун патне Иерусалимран, пӗтӗм
Иудейӑран тата Иордан шывӗ таврашӗнчен
çынсем пырсах тӑнӑ. 6 Иоанн вӗсене çылӑхӗсенчен
ӳкӗнтерсе Иорданра шыва кӗртнӗ.
7 Фарисейсемпе саддукейсенчен чылайӑшӗ хӑй
патне шыва кӗме пынине асӑрхасан Иоанн вӗсене
çапла каланӑ: «Эй, çӗлен çурисем! Çитес çилӗрен
тарса хӑтӑлма кам вӗрентрӗ сире? 8 Эппин хӑвӑр
çылӑхран ӳкӗннине тивӗçлӗ ӗçпе çирӗплетсех
тӑрӑр. 9 „Пирӗн мӑн асатте – Авраам!“ – текен
шухӑшпа киленсе ан пурӑнӑр. Калатӑп сире: Турӑ
çак чулсенчен те Авраам ачисем тума пултарать.
10 Акӑ пуртӑ та йывӑç тымарӗ çумӗнчех выртать.
Ырӑ çимӗç кӳмен кирек епле йывӑçа та касса вута
пӑрахаççӗ. 11 Эпӗ сире ӳкӗнтерсе шывпа тӗне
кӗртетӗп. Анчах та ман хыççӑн Килекенни манран
хӑватлӑрах, эпӗ Унӑн пушмакне хывма та тивӗçлӗ
мар. Вӑл сире Святой Сывлӑшпа тата вутпа тӗне
кӗртӗ. 12 Кӗреçи те Унӑн Хӑйӗн аллинчех. Вӑл
йӗтемӗнчи туллине сӑвӑрса тасатӗ те ӑна Хӑйӗн
кӗлетне пухса хурӗ, арпи-улӑмне вара сӳнми вутра
çунтарса ярӗ».

*Иисуса шыва кӗртни*
(Мк. 1:9-11; Лк. 3:21-22)

13 Çавӑн чухне, Хӑйне Иоанн шыва кӗрттӗр тесе,
Иисус Галилейӑран Иордан хӗррине пынӑ.
14 «Санӑн мана шыва кӗртмелле, Эсӗ вара Ху ман
патӑма килтӗн-и?» – тесе хирӗçленӗ малтанах
Иоанн. 15 Анчах та Иисус ӑна хуравласа каланӑ:
«Çапла пулмалла та, Турӑ хушнине йӑлтах пирӗн
çапла пурнӑçламалла». Иоанн вара шыва кӗртме
килӗшнӗ. 16 Иоанн шыва кӗртнӗ хыççӑнах Иисус
çырана тухнӑ. Акӑ ӗнтӗ Ун тӗлӗнче тӳпе уçӑлса
кайнӑ та, Иоанн Турӑ Сывлӑшӗ Иисус çине
кӑвакарчӑн пек курӑнса аннине асӑрханӑ . 17 Акӑ,
тӳперен çапла сасӑ илтӗнсе кайнӑ: «Çакӑ Манӑн
савнӑ Ывӑлӑм, Манӑн ырӑ кӑмӑлӑм Унра».

*Иисуса шуйттан илӗртсе тӗрӗслени*
(Мк. 1:12-13; Лк. 4:1-13)

4 Çавӑн хыççӑн Сывлӑш Иисуса шуйттан
илӗртӗвӗпе тӗрӗслеме пуш хире ертсе кайнӑ.
2 Унта Иисус хӗрӗх кун та хӗрӗх каç типӗ тытнӑ,
юлашкинчен Унӑн çиесси килнӗ. 3 Хайхи шуйттан,
илӗртсе тӗрӗслекен, Ун патне пынӑ та çапла
каланӑ: «Эсӗ Турӑ Ывӑлӗ пулсан çак чулсене çӑкӑр
пулма хуш». 4 «Çырнинче çапла каланӑ, – тавӑрнӑ
ӑна Иисус, – çын çӑкӑрпа кӑна пурӑнмасть, Турӑ
çӑварӗнчен тухакан кашни сӑмахпах пурӑнать».
5 Унтан шуйттан Ӑна Иерусалима илсе кайнӑ та
Турӑ Çурчӗ тӑррине тӑратса 6 çапла каланӑ: «Эсӗ
Турӑ Ывӑлӗ пулсан çакӑнтан сик. Çырнинче каланӑ
вӗт-ха: „Турӑ Хӑйӗн ангелӗсене Сана упрама хушӗ,
урупа чултан такӑнасран вӗсем Сана алӑ çинче
çӗклесе çӳрӗç“». 7 Иисус ӑна çапла тавӑрнӑ: «„Хӑвӑн
Хуçа Турруна илӗртсе ан тӗрӗсле“, – тесе те çырнӑ
вӗт». 8 Унтан шуйттан Иисуса питӗ çӳллӗ ту çине
илсе кайнӑ та Ӑна тӗнчери мӗн пур патшалӑхсене,
вӗсен чапне-илемне кӑтартнӑ. 9 «Эсӗ мана
чӗркуçленсе пуççапсан çаксене йӑлтах Сана
паратӑп», – тенӗ Ӑна шуйттан. 10 Вара Иисус ӑна
çапла хуравланӑ: «Кай Ман патӑмран, шуйттан!
Çырнинче: „Хуçа Турруна кӑна пуççап, пӗр Уншӑн
анчах ӗçлесе тӑр“, – тенӗ вӗт». 11 Вара шуйттан
Иисус патӗнчен кайнӑ, çавӑнтах ангелсем пынӑ та
Уншӑн ӗçлесе тӑма тытӑннӑ.

*Иисус Галилейӑра вӗрентме пуçлани*
(Мк. 1:14-15; Лк. 4:14-15)

12 Иоана тытса хупнине илтсен Иисус Галилея
çӗрне кайнӑ. 13 Вӑл Завулонпа Неффалим тӑрӑхне,
тинӗс хӗрринчи Капернаум хулине, Назаретран
пурӑнма куçнӑ. 14 Çак ӗç Исаия пророк сӑмахӗсем
пурнӑçланма пулса иртнӗ. Вӑл çапла каланӑ пулнӑ:
15 «Тинӗс еннелле выртакан çул çинчи, Иордан леш
енчи Завулонпа Неффалим çӗрӗ, чӑн Турра пӗлмен
Галилея! 16 Çавӑнта тӗттӗмре пурӑннӑ халӑх хӑватлӑ
çутӑ курчӗ! Вилӗм çӗрӗнче, вилӗм тӗттӗмлӗхӗнче
пурӑнакансемшӗн çутӑ килчӗ». 17 Çавӑнтан вара
Иисус ӳкӗтлесе вӗрентме пуçланӑ. «Çӳлти Патшалӑх
çывхарчӗ ӗнтӗ, çавӑнпа та ӳкӗнӗр!» – тесе вӗрентнӗ
Вӑл.

*Иисусӑн малтанхи вӗренекенӗсем*
(Мк. 1:16-20; Лк. 5:1-11)

18 Пӗррехинче Иисус Галилея тинӗсӗ хӗррипе
иртсе пынӑ. Çавӑн чухне Вӑл тинӗсе сӗреке-тетел
пӑрахакан икӗ пӗртӑвана – Петр текен Симонпа
унӑн шӑллӗне Андрея – курнӑ. Вӗсем пулӑçӑсем
пулнӑ. 19 Иисус вӗсене çапла каланӑ: «Ман хыççӑн
пыракансем пулӑр, Эпӗ сире этем чунӗсене
тытакансем тӑвӑп». 20 Вӗсем вара çав самантрах
сӗреке-тетелӗсене хӑварса Ун хыççӑн кайнӑ.
21 Пырсан-пырсан Вӑл тата икӗ пӗртӑвана –
Иаковпа унӑн шӑллӗне Иоана – курнӑ. Вӗсем
Зеведей ывӑлӗсем пулнӑ, ашшӗпе пӗрле кимӗ
çинче сӗреке-тетелӗсене юсаса тӑнӑ, Иисус вӗсене
те Хӑйпе пӗрле чӗннӗ. 22 Вӗсем вара çав самантрах
киммине хӑварнӑ та, ашшӗнчен уйӑрӑлса, Иисус
хыççӑн кайнӑ.

*Иисус Галилейӑра вӗрентни тата сыватни*
(Лк. 6:17-19)

23 Иисус пӗтӗм Галилея çӗрӗ тӑрӑх çӳренӗ. Вӑл
унти синагогӑсенче вӗрентнӗ, Çӳлти Патшалӑх
çинчен Ырӑ Хыпар пӗлтернӗ, халӑха тӗрлӗ чир-
чӗртен, халсӑрлӑхран сыватнӑ. 24 Çавӑнпа пӗтӗм
Сири çӗрӗнче Ун çинчен хыпар сарӑлнӑ. Ун патне
мӗн пур халсӑр пулнисене, чир-чӗрлисене,
тытамаклисене, усал ернисене, уйӑх çапнисене
тата паралич çапнисене иле-иле пынӑ. Иисус
вӗсене сыватнӑ. 25 Унӑн хыçӗнчен Галилейӑран,
Вунхула çӗрӗнчен, Иерусалимран, Иудейӑран,
Иордан леш енчи çӗрсенчен килнӗ темӗн чухлӗ
халӑх çӳренӗ.

*Ту çинче вĕрентни. Телейлĕх пил-хушăвĕсем*
(Лк. 6:20-23)

5 Иисус, халăх йышлăн пухăннине курсан, ту
çине улăхнă. Вăл ларсан, вĕренекенĕсем Ун
патне пуçтарăннă. 2 Иисус вĕсене çапла каласа
вĕрентме пуçланă: 3 «Чун-чĕм кĕлмĕçисем телейлĕ,
вĕсене Çӳлти Патшалăх пулĕ. 4 Йĕрекенсем
телейлĕ, вĕсем лăпланĕç. 5 Йăваш кăмăллисем
телейлĕ, вĕсене çĕр тивĕ. 6 Тӳрĕлĕхе выçăхса çитнĕ
пек, ăш хыпса çитнĕ пек шыракансем телейлĕ:
вĕсем тăранĕç. 7 Хĕрхенме пĕлекенсем телейлĕ,
вĕсене те хĕрхенĕç. 8 Таса чунлисем телейлĕ, вĕсем
Турра курĕç. 9 Килĕшӳ кӳрекенсем телейлĕ, вĕсене
Турă ывăлĕсем тейĕç. 10 Тӳрĕлĕхшĕн хĕсĕрленине
тӳсекенсем телейлĕ, вĕсене Çӳлти Патшалăх пулĕ.
11 Сире Ман пирки хурласан, хĕсĕрлесен,
сăлтавсăрах тĕрлĕ сăлтав тупса усал сăмахпа
хăртсан, эсир телейлĕ. 12 Ĕлĕк пурăннă пророксене
те çавнашкалах хĕсĕрленĕ. Çавăнпа та савăнса
хĕпĕртĕр: тӳпере сире пысăк сăвап пулĕ».

*Тĕнче тăварĕпе тĕнче çути*
(Мк. 9:50; Лк. 14:34-35)

13 «Эсир – тĕнче тăварĕ. Тăвар хăй хăватне
çухатсан, епле ăна тăварлă тăвăн? Вăл ĕнтĕ ниме
юрăхсăр, ăна çын ури айĕнче таптанма кăна
кăларса тăкмалла. 14 Эсир – тĕнче çути. Ту çинче
ларакан хула курăнмасăр юлмĕ. 15 Çутаткăça та
çутсан чӳлмекпе хупламаççĕ; пӳртрисене пурне те
çутă пултăр тесе ăна çутаткăç лартмалли çине
вырнаçтараççĕ. 16 Çапла сирĕн çуттăр та çынсем
хушшинче çутаттăр, вĕсем, сирĕн ырă ĕçĕрсене
курса, Çӳлти Аçăра мухтаччăр».

### Христос тата саккун

17 «Эпĕ пророксен сăмахĕсене е Моисей саккунне
пăсма килнĕ тесе ан шухăшлăр. Эпĕ пăсма килмен,
туса çитерме килнĕ. 18 Чăн калатăп сире: çĕрпе
пĕлĕт пĕтиччен, çырнинче калани пĕтĕмпех
пурнăçланиччен саккунри пĕр сас палли те, пĕр
йĕр те пĕтмĕ. 19 Кам çак ансат пил-хушусенчен
пĕрне те пулин пăсать, çынсене те çаплах тума
вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра кĕçĕнни тейĕç.
Кам пил-хушусене пурнăçлать, çынсене те çаплах
тума вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра асли тейĕç.
20 Калатăп сире: сирĕн тӳрĕлĕхĕр фарисейсемпе
саккун вĕрентӳçисен тӳрĕлĕхĕнчен тĕрĕсрех
пулмасан, эсир Çӳлти Патшалăха кĕреймĕр».

### Çилĕ çинчен

21 «„Ан вĕлер, çынна вĕлерекен суда тивĕçлĕ“, –
тесе авалах каланине эсир илтнĕ. 22 Эпĕ вара сире
калатăп: хăй тăванне сăлтавсăр çилленекен кашни
çынах суда тивĕçлĕ. Кам хăй тăванне „ухмах“ тет,
çав синедрион судне тивĕçлĕ. Кам хăй тăванне
„ирсĕр“ тет, çав тамăк вутне тивĕçлĕ. 23 Çапла вара,
эсĕ Турра парне кӳмелли вырăна пырсан, тăвану
сана кӳреннине аса илсен, 24 парнӳне унтах, парне
вырăнĕ умĕнчех, хурса хăвар та тăванупа кайса
çураç. Вара тин тавăрăнса парнӳне кӳр. 25 Хупа
судлашас текенпе çул çинчех çураç. Ахальлĕн вăл
сана судья аллине парĕ, судья сана тĕрмене
хуптарма хуралçă аллине парĕ. 26 Чăн калатăп сана:
юлашки пусна парса хăвармасăр та унтан
тухаймăн».

### Мăшăра улталани тата уйăрăлни çинчен

27 «„Мăшăрна ан ултала“, – тесе авалах каланине
эсир илтнĕ ĕнтĕ. 28 Эпĕ вара сире калатăп: хĕрарăм
çине аскăннăн пăхакан кашни çын хăйĕн чунĕнче
мăшăрне улталать. 29 Сана сылтăм куçу çылăх тума
илĕртет пулсан, ăна чавса кăлар та ывăтса яр.
Мĕншĕн тесен ӳт-пĕвĕн пĕр пайне пĕтерни саншăн
пĕтĕм ӳт-пĕве тамăка пăрахнинчен лайăхрах.
30 Сана сылтăм аллу çылăх тума илĕртет пулсан, ăна
кас та ывăтса яр. Мĕншĕн тесен ӳт-пĕвĕн пĕр пайне
пĕтерни саншăн пĕтĕм ӳт-пĕве тамăка
пăрахнинчен лайăхрах.
31 „Кам хăй арăмне уйăрса ярать, çавăн арăмне
уйăрăлу хучĕ памалла“, – тенĕ тата авалах. 32 Эпĕ
вара сире калатăп: кам хăй арăмне аскăн ĕçпе
айăпа кĕмен çĕртех уйăрса ярать, çав ăна мăшăра
улталас çул çине тăратать. Уйăрăлнă хĕрарăма
качча илни те мăшăра улталаниех пулать».

*Тупа тăвасси çинчен*
(Мф. 19:9; Мк. 10:11-12; Лк. 16:18)

33 «Тата эсир авалах каланă çак сăмахсене те
илтнĕ ĕнтĕ: „Тупа тунинчен ан ирт, Хуçа Турă
умĕнче тупа тунине пурнăçла“. 34 Эпĕ вара сире
калатăп: нимĕн ячĕпе те тупа ан ту. Пĕлĕтпе те тупа
ан ту, вăл Туррăн престолĕ. 35 Çĕрпе те тупа ан ту,
вăл Турă ури айĕн кантармалăхĕ. Иерусалимпа та
тупа ан ту, вăл аслă Патша хули. 36 Пуçупа та тупа ан
ту, эсĕ пĕр çӳç пĕрчин тĕсне те улăштарма
пултараймастăн. 37 Сирĕн мĕн калани те çакă çеç
пултăр: „çапла, çапла“; „çук, çук“. Çак сăмахсенчен
ытлашшине вара шуйттан калаттарать».

*Усала усалпа ан тавăр*
(Лк. 6:29-30)

38 «„Куçшăн – куç, шăлшăн – шăл“, – тенине эсир
илтнĕ ĕнтĕ. 39 Эпĕ вара сире калатăп: усала усалпа
ан тавăр. Хăвна сылтăм енчен çупса яракана тепĕр
енне çавăрса пар. 40 Кам санпа судлашса кĕпӳне
туртса илесшĕн, ăна çиелти тумтирне те пар. 41 Кам
сана хăйпе пĕрле пĕр çухрăм уттарать, унпа пĕрле
иккĕ кай. 42 Хăвăнтан ыйтакана пар, кивçен илес
текенрен ан пăрăн».

*Тăшманăрсене юратăр*
(Лк. 6:27-28, 32-36)

43 «„Хăвна çывăх çыннуна юрат, тăшманна
кураймасăр тăр“, – тенине эсир илтнĕ ĕнтĕ. 44 Эпĕ
вара сире калатăп: тăшманăрсене юратăр, хăвăра
ылханакансене ырă сунăр, хăвăра курайман
çынсене ырă тăвăр , хăвăра кӳрентерекен тата
хĕсĕрлекен çынсемшĕн кĕлтăвăр. 45 Вара эсир
Çӳлти Аçăрăн ачисем пулăр. Вăл Хăйĕн хĕвелне
усаллисем çине те, ыррисем çине те пăхтарать;

çумăрне тӳрĕ пурăнакансем çине те, тӳрĕ мар
пурăнакансем çине те çутарать. 46 Хăвăра
савакансене кăна юрататăр пулсан, эсир сăвапа
тивĕçлĕ-и-ха? Налук пухакансем те çаплах тумаççĕ-
им? 47 Хăвăр тăванăрсене анчах саламлатăр пулсан,
эсир кирлинчен ытла мĕнех тăватăр? Урăх халăх
çыннисем те çаплах тумаççĕ-им? 48 Çапла вара,
Çӳлти Аçăр епле паха, эсир те çапла паха пулăр».

### Чухăнсене пулăшасси çинчен

6 «Асăрханăр, чухăнсене пулăшас ĕçе çынна
кăтартасшăн ан тăвăр, унсăрăн сире Çӳлти
Аçăртан сăвап пулмĕ. 2 Хăйсене çынсем мухтаччăр
тесе, икĕ питлисем синагогăсемпе урамсенче шăв-
шав кăларса чухăнсене пулăшанçи тăваççĕ. Ĕнтĕ
эсĕ вĕсем пек ан пул. Чăн калатăп сире: илнĕ
мухтавĕ вĕсен кунти пурăнăçра кăна. 3 Эсĕ вара
чухăнсене пулăшнине ан палăрт: сылтăм аллу мĕн
тунине сулахаййи ан пĕлтĕр. Вара вăрттăн тунине
те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса парĕ».

*Кĕлтăвасси çинчен*

(Лк. 11:2-4)

5 «Турра кĕлтунă чухне те икĕ питлĕ çынсем пек ан
пул. Пурте курччăр тесе, вĕсем синагогăсенче, урам
тăваткалĕсенче тăрса кĕлтума юратаççĕ. Чăн
калатăп сире: илнĕ мухтавĕ вĕсен кунти пурăнăçра
кăна. 6 Эсĕ вара кĕлтунă чухне шалти пӳлĕме кĕр те,
алăкна хупса, курăнми Аçуна кĕлту. Вара вăрттăн
тунине те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса парĕ.
7 Кĕлтунă чухне тата урăх халăх çыннисем пек
ытлашши ан калаç. Вĕсем вăрăм кĕлле туррисем
илтĕç тесе шухăшлаççĕ. 8 Çапла вара, вĕсем пек ан
кĕлтăвăр, мĕншĕн тесен сире мĕн кирлине Аçăр
эсир Унран ыйтиччене пĕлсе тăрать. 9 Эсир çапла
кĕлтăвăр: „Эй, Çӳлти Аттемĕр! Санăн яту
хисеплентĕр; 10 Санăн Патшалăху килтĕр; Санăн
ирĕкӳ çĕр çинче те çӳлти пекех пултăр. 11 Паян
пурăнмалăх çăкăр пар пире. 12 Эпир хамăра
парăмлă пулнисене каçарнă пек, пирĕн парăмсене
каçар пире. 13 Çылăха ан кĕрт пире, усалтан хăтар
пире. Патшалăх та, хăват та, аслăлăх та ĕмĕрех
Санăн. Аминь“ . 14 Эсир çын айăпĕсене каçарсан,
Çӳлти Аçăр та сире каçарĕ. 15 Эсир çын айăпĕсене
каçармасан, Çӳлти Аçăр та сирĕн çылăхăрсене
каçармĕ».

### Типĕ тытасси çинчен

16 «Типĕ тытнă чухне те икĕ питлĕ çынсем пек
салхуллă ан çӳрĕр. Вĕсем хăйсем типĕ тытнине
çынсене кăтартасшăн кулянăçлă сăн-питпе çӳреççĕ.
Чăн калатăп сире: илнĕ мухтавĕ вĕсен кунти
пурăнăçра кăна. 17 Эсĕ вара типĕ тытнă чухне çӳç-
пуçна тураса тирпейле те пит-куçна çу. 18 Çакна эсĕ
ху типĕ тытнине çынсене палăртас мар тесе,
курăнми Аçу анчах пĕлсе тăтăр тесе ту. Вара
вăрттăн тунине те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса
парĕ».

*Тӳпери пурлăх çинчен*

(Лк. 12:33-34)

19 «Çĕр çинче хăвăр валли мул ан пухăр: кунта
кĕве те çиет, тутăхса та пĕтет, вăрăсем те çĕмĕрсе
кĕрсе вăрлаççĕ. 20 Эсир хăвăр валли мул тӳпере
пухăр. Унта кĕве те çимест, тутăхса та пĕтмест,
вăрăсем те çĕмĕрсе кĕрсе вăрламаççĕ. 21 Мĕншĕн
тесен пурлăхăр ăçта, чун-чĕрĕр те çавăнтах пулĕ».

*Куç – ӳт-пӳ çутаткăçĕ*

(Лк. 11:34-36; 16:13)

22 «Куç – ӳт-пӳ çутаткăçĕ. Çавăнпа ĕнтĕ санăн куçу
таса пулсан, пĕтĕм ӳт-пĕвӳ те çутă пулĕ. 23 Куçу таса
мар пулсан, пĕтĕм ӳт-пĕвӳ те тĕксĕм пулĕ. Çапла
вара, санăн ăшунти çутту та тĕттĕм пулсан, чăн
тĕттĕмӳ еплерех-ши?
24 Никам та харăсах икĕ хуçа тарçи пулаймасть,
мĕншĕн тесен вăл пĕр хуçине кураймĕ, теприне
юратĕ; е пĕриншĕн чунне парса тăрăшĕ,
теприншĕн тăрăшмĕ. Эсир харăсах Турă чури те,
мул чури те пулаймăр».

*Çӳлти Аçăра шанăр*

(Лк. 12:22-34)

25 «Çавăнпа та сире калатăп: чуна усрамалăх ĕçме-
çиме пирки те, кĕлеткене тăхăнмалăх тумтир пирки
те ан кулянăр. Чун – апат-çимĕçрен, кĕлетке –
тумтиртен пахарах мар-им вара? 26 Вĕçен кайăксене
сăнăр-ха: вĕсем тырă акса-вырса кĕлете пухса
хумаççĕ. Çӳлти Аçăр вĕсене тăрантарать. Эсир
вĕсенчен чылай пахарах мар-им вара? 27 Хăй
тăрăшнипе сирĕнтен хăшĕ шит чухлĕ те пулин ӳсме
пултарайĕ? 28 Тумтиршĕн те мĕншĕн кулянатăр?
Хирти чечексем епле ӳснине сăнăр-ха. Вĕсем
тертленсе çип арламаççĕ, 29 анчах та сире акă мĕн
калатăп: тем тери чаплă пулнă пулин те, Соломон
патша пĕр хир чечекĕ чухлĕ те тумланайман. 30 Эй,
çителĕксĕр ĕнененекенсем! Паян пур та ыран вута
кăна пăрахмалли хирти курăка та Турă çапла çи-пуç
парать пулсан, сире тата ытларах памĕ-и? 31 Çапла
вара, „мĕн çиес“, „мĕн ĕçес“, „мĕн тăхăнас“ тесе ан
кулянăр. 32 Мĕншĕн тесен çавсемшĕн пуриншĕн те
урăх халăх çыннисем тăрăшаççĕ. Вăл япаласем
пурте сире кирлине вара Çӳлти Аçăр ахалех пĕлсе
тăрать. 33 Пуринчен малтан Турă Патшалăхне, Унăн
тӳрĕлĕхне ăнтăлса шырăр, ытти вара сирĕн пурте
пулĕ. 34 Çапла ĕнтĕ ыранхи куншăн ан кулянăр,
тăрăшмалли ыран та тупăнĕ, кунсерен ĕç-пуç
тупăнсах пырать».

*Ыттисене ан айăплăр*

(Лк. 6:37-38, 41-42)

7 «Ан айăплăр, вара хăвăра та айăпламĕç.
2 Мĕншĕн тесен эсир çынсене мĕнле
айăплатăр, хăвăра та çаплах айăплĕç. Эсир çынсене
мĕнле виçепе виçетĕр, хăвăра та çав виçепех виçĕç.
3 Мĕншĕн эсĕ тăвану куçĕнчи çӳппе куратăн, хăвăн
куçунти пĕренене асăрхамастăн? 4 Хăвăн куçунта
пĕрене пулин те, епле-ха эсĕ тăванна: „Куçна кĕнĕ
çӳппе кăларса ярам-ха“, – тесе калама пултаратăн?
5 Икĕ питлĕскер! Малтан хăвăн куçунти пĕренене
кăлар, вара тин тăванун куçĕнчи çӳппе епле

кăлармаллине уçăмлăн курăн. 6 Сăваплă япалана
йытăсене пăрахса ан парăр, хаклă ĕнчĕ шăрçана та
сыснасем умне ан сапалăр – вĕсем ăна таптĕç кăна,
хăвăра туртса çурĕç».

*Ылтăн йĕрке*

(Лк. 11:9-13)

7 «Ыйтăр – вара сире парĕç, шырăр – вара тупăр,
шаккăр – вара сире уçĕç. 8 Мĕншĕн тесен кашни
ыйтакан илет, шыракан та тупать, шаккакана та
уçаççĕ. 9 Сирĕн хушшăрта ывăлĕ çăкăр ыйтсан, ăна
чул паракан çын пур-и? 10 Е пулă ыйтсан, çĕлен
паракан пур-и? 11 Енчен те эсир, усал пулин те,
ачăрсене ырă япала пама пĕлетĕр пулсан, Çӳлти
Асăр Хăйĕнчен ыйтакансене ырăлăхне паратех.
12 Çапла вара, çынсене хăвăрпа пур тĕлĕшĕнчен те
мĕнле пултарас килет, вĕсемпе те çавнашкалах
пулăр. Çакă вăл саккун тата пророксен сăмахĕсен
тĕшши пулать те».

*Тăвăр хапха*

(Лк. 13:24)

13 «Тăвăр хапхапа кĕрĕр, мĕншĕн тесен пĕтеслĕх
хапхи аслă, çулĕ сарлака. Чылайăшĕ çав çулпа
пырать. 14 Чĕрĕлĕх хапхи вара тăвăр, çулĕ хĕсĕк.
Çав çула тупаканĕ сахал».

*Йывăça çимĕçĕнчен пĕлеççĕ*

(Лк. 6:43-44)

15 «Суя пророксенчен асăрханăр. Вĕсем сирĕн
патăра сурăх тирĕ витĕнсе пыраççĕ, анчах ăшĕнче
хăйсем – тискер кашкăрсем. 16 Вĕсене эсир
ĕçĕсенчен пĕлĕр. Пиçен çинчен – иçĕм çырли,
куршанак çинчен смоква татни пур-и? 17 Çапла,
лайăх йывăç ырă çимĕçех парать, начар йывăçăн
çимĕçĕ те япăх. 18 Лайăх йывăç япăх çимĕç тума
пултараймасть, начар йывăç та ырă çимĕç тума
пултараймасть. 19 Ырă çимĕç кӳмен йывăça касса
вута пăрахаççĕ. 20 Çапла вара, суя пророксене ĕçĕ-
çимĕçĕнчен пĕлĕр».

*Эпĕ сире нихăçан та пĕлмен*

(Лк. 13:25-27)

21 «Мана: „Эй, Хуçамăр, эй, Хуçамăр!“ – тесе
калакан кашни çынах Çӳлти Патшалăха кĕреймĕ.
Унта Çӳлти Аттемĕн ирĕкне пурнăçлакан кăна кĕрĕ.
22 „Эй, Хуçамăр, эй, Хуçамăр! Эпир Сан ятупа
пророкла калаçмарăмăр-им? Усалсене Сан ятупа
хăваласа кăлармарăмăр-им? Сан ятупа тĕлĕнмелле
ĕç нумай тумарăмăр-им?“ – тейĕ Мана чылайăшĕ
суд кунĕ çитсен. 23 Ун чухне Эпĕ вĕсене калăп: „Эй,
йĕркесĕр ĕç тăвакансем! Эпĕ сире нихăçан та
пĕлмен, кайăр Ман патăмран!“»

*Çурт лартакан икĕ çын çинчен каланă ытарлăх*

(Лк. 6:47-49)

24 «Çапла вара, Манăн çак сăмахсене итлекен,
вĕсене пурнăçлакан кашни çыннах хăйĕн çуртне
чул çине лартнă ăслă çынпа танлаштарăп. 25 Акă
çумăр çуса ярать, юхан шыв çырантан тухать, çил-
тăвăл пуçланса каять. Хайхисем çав çурта пырса
çапаççĕ, анчах та чул çине лартнăран вăл
ишĕлмест. 26 Манăн çак сăмахсене итлесе, вĕсене
пурнăçламан кашни çыннах хăйĕн çуртне хăйăр
çине лартнă ăссăр çын евĕрлĕ. 27 Акă çумăр çуса
ярать, юхан шыв çырантан тухать, çил-тăвăл
пуçланса каять. Хайхисем çав çурта пырса çапаççĕ
те вăл йăтăнса анать, вара ишĕлчĕк çеç тăрса
юлать».

28 Иисус çак сăмахсене каласа пĕтерсен, халăх
Унăн вĕрентĕвĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ.
29 Мĕншĕн тесен Вăл саккун вĕрентӳçисемпе
фарисейсем пек мар, Турă хăват панă пек вĕрентнĕ.

*Иисус юхан-суранлă çынна сыватать*

(Мк. 1:40-45; Лк. 5:12-16)

8 Иисус ту çинчен ансан, Ун хыçĕнчен темĕн
чухлĕ халăх пынă. 2 Сасартăк Иисус патне пĕр
юхан-суранлă çын çывхарнă та чĕркуçленсе ларса
çапла каланă: «Хуçамăр! Сыватас тесессĕн, Эсĕ мана
сыватма пултаратăнах». 3 Иисус аллине тăсса ăна
сĕртĕннĕ те çапла каланă: «Чиртен тасатас тетĕп,
сывал». Çын вара çавăнтах юхан-суранран тасалнă.
4 «Асту, сывални çинчен никама та ан кала, – тенĕ
ăна Иисус. – Хăвна священника кайса кăтарт та
Моисей Турра кӳме хушнă парнене кӳр. Çакă ху
сывалнине пĕлтерни пулать те».

*Çĕрпӳ тарçине сыватни*

(Лк. 7:1-10; Ин. 4:43-54)

5 Иисус Капернаума çул тытнă. Хулана çитсен Ун
патне пĕр çĕрпӳ пырса çапла тархасланă:
6 «Хуçамăр, килте ман тарçăм хускалайми
асапланса выртать». 7 «Эпĕ пырăп, ăна
сыватăп», – тавăрса каланă Иисус. 8 Анчах та çĕрпӳ
çапла каланă: «Эй, Хуçамăр! Сана хамăн кил-
çуртăма чĕнсе кĕртме эпĕ тивĕçлĕ мар. Эсĕ хуш
кăна, вара тарçăм сывалĕ. 9 Эпĕ аслисене пăхăнса
тăратăп пулин те, манăн хама пăхăнса тăракан
салтаксем те пур. Эпĕ вĕсенчен пĕрне: „Кай!“ –
тесен, вăл каять. Тепĕрне: „Кил!“ – тесен, вăл
пырать. Тарçăма та: „Çавна ту!“ – тесе хушсан, вăл
тăвать». 10 Çакна илтсен Иисус тĕлĕнсех кайнă. «Чăн
калатăп сире, – тенĕ Вăл Хăй хыççăн пыракан
халăха, – кунашкал çирĕп ĕненӳ Эпĕ Израильте те
курманччĕ. 11 Сире акă мĕн калатăп: çакнашкал
ĕненекенсем хĕвел тухăçĕнчен те, хĕвел анăçĕнчен
те нумаййăн килĕç те Авраампа, Исаакпа, Иаковпа
пĕрле Çӳлти Патшалăх кĕрекине ларĕç. 12 Çӳлти
Патшалăхра пулма çуралнисене вара тулаш
сĕмлĕхе кăларса пăрахĕç; унта шăл шатăртаттарса
йĕни илтĕнĕ». 13 Унтан Иисус çĕрпĕве çапла каланă:
«Каях, ху ĕненнĕ пек пултăр сана». Тарçи çав
самантрах сывалнă вара.

*Нумай çынна сыватни*

(Мк. 1:29-34; Лк. 4:38-41)

14 Иисус, Петр килне пырсан, унăн хунямăшĕ сив
чирпе выртнине курнă. 15 Иисус хĕрарăмăн аллине
сĕртĕннĕ те унăн чирĕ иртсе кайнă. Вара Петр
хунямăшĕ вырăн çинчен тăрса вĕсене хăналама
пуçланă. 16 Каç пулсан Иисус патне усал ернĕ нумай
çынна илсе пынă. Вăл усал сывлăшсене сăмахĕпех
хăваласа кăларнă, чирлисене пурне те сыватнă.
17 Çапла Турă Исаия пророк урлă калани

пурнăçланнă. Пророк çапла каланă пулнă: «Вăл
пирĕн халсăрлăха тата чир-чĕре илсе кайрĕ».

*Христос хыççăн пырасси çинчен*

(Лк. 9:57-62)

18 Хăй тавра халăх пит нумай пухăннине
асăрхасан вĕренекенĕсене Иисус кимĕпе тепĕр
енне ишсе каçма хушнă. 19 Çавăн чухне Ун патне
саккун вĕрентӳçи пынă та çапла каланă:
«Вĕрентекен! Эсĕ кирек ăçта кайсан та, эпĕ Сан
хыçăнтан пыракан пулăп». 20 «Тиллĕн те шăтăкĕ
пур, вĕçен кайăкăн та йăви пур, Этем Ывăлĕн кăна
пуçне хурса канмалăх вырăнĕ çук», – тенĕ вара ăна
Иисус. 21 Вĕренекенĕсенчен тепри Ăна çапла
каланă: «Хуçамăр! Ирĕк парсамччĕ: вилнĕ аттене
кайса пытарам малтан». 22 Анчах Иисус ăна çапла
каланă: «Ман хыçăмран пыракан пул, вилнĕ
çыннисене вилĕмлисемех пытарччăр».

*Çил-тăвăла чарни*

(Мк. 4:35-41; Лк. 8:22-25)

23 Иисус кимĕ çине ларсан вĕренекенĕсем те Унпа
пĕрле ларнă. 24 Тинĕс çинче вăйлă çил-тăвăл тухнă,
кимме путарасла хумсем çапа пуçланă. Иисус çав
вăхăтра çывăрнă пулнă. 25 Вĕренекенĕсем Иисуса
пырса вăратнă та: «Эй, Хуçамăр, çăл пире,
пĕтетпĕр», – тенĕ. 26 «Эй, çителĕксĕр ĕненекенсем!
Мĕншĕн эсир çав териех хăравçă?» – тенĕ вĕсене
Иисус. Унтан Вăл, тăрса, çиле те, тинĕсе те
лăпланма хушнă, вара çанталăк шăпах пулнă.
27 «Çиле те, тинĕсе те итлеттерме пултараканскер,
Кам пулчĕ-ши Ку?» – тенĕ вара çынсем тĕлĕнсе.

*Усал ернĕ икĕ çынна сыватни*

(Мк. 5:1-20; Лк. 8:26-39)

28 Иисус тинĕс леш енне, Гергеса çĕрне ишсе
каçнă. Унта Ăна çĕр хăвăлĕнчи тупăклăхсенчен
тухнă, усал ернĕ икĕ çын тĕл пулнă. Вĕсем питĕ
тискерленсе кайнăран çав çулпа никам та
çӳреймен. 29 Иисуса курсанах вĕсем кăшкăрса янă:
«Эй, Турă Ывăлĕ, Иисус! Санăн пирĕнпе мĕн ĕç пур?
Эсĕ пире кунта вăхăт çитиччене асаплантарма
килтĕн». 30 Вĕсенчен аяккарахра пĕр пысăк сысна
кĕтĕвĕ çӳренĕ. 31 Усалсем Иисуса: «Эсĕ пире
хăваласа кăларатăн пулсан, кĕтӳри сыснасем ăшне
кĕме хушсам», – тесе йăлăннă. 32 «Кайăрах», – тенĕ
вара Вăл усалсене. Вĕсем, тухса, сыснасем ăшне
кĕнĕ. Çавăнтах пĕтĕм сысна кĕтĕвĕ чăнкă çырантан
тинĕсе сикнĕ те путса вилнĕ. 33 Сысна пăхакансем
вара хулана чупнă, çитсессĕн, мĕн-мĕн пулса
иртнине, усал ернĕ çынсене мĕн пулнине те каласа
кăтартнă. 34 Вара пĕтĕм хула халăхĕ Иисуса хирĕç
тухнă. Ăна курсан хăйсен çĕрĕ-шывĕнчен кайма
йăлăннă.

*Паралич çапнă çынна сыватни*

(Мк. 2:1-12; Лк. 5:17-26)

9 Унтан Иисус кимĕ çине ларса каялла ишсе
каçнă та Хăй пурăнакан хулана тавăрăннă. 2 Ун
патне паралич çапнă пĕр çынна хăй выртакан
вырăнĕпех çĕклесе пынă. Иисус вĕсен ĕненĕвне
курнă та паралич çапнă çынна: «Хăюллăрах пул,
ачам! Санăн çылăхусем каçарăнчĕç», – тенĕ. 3 «Вăл
Турра хурлать», – тесе шухăшланă çавăн чухне хăш-
пĕр саккун вĕрентӳçисем. 4 Иисус, вĕсен
шухăшĕсене пĕлсе тăрса: «Мĕншĕн эсир хăвăр
ăшăрта ырă мара шухăшлатăр? – тенĕ. 5 – Мĕн
калама çăмăлтарах: „Санăн çылăхусем каçарăнчĕç“
теме е: „Тăр та утса çӳре“ теме? 6 Анчах та Этем
Ывăлĕн çĕр çинче çылăх каçарма та ирĕк пуррине
сире пĕлтерессĕм килет». Çавна пĕлтерес тесе Вăл
паралич çапнă çынна: «Тăр та сарнă вырăнна илсе
киле кай» – тенĕ. 7 Лешĕ тăнă та вырăнне илсе
килне кайнă. 8 Халăх вара, çакна курсан, питĕ
тĕлĕннĕ, этеме çавнашкал вăй-хăват панă Турра
мухтанă.

*Матфея чĕнни*

(Мк. 2:13-17; Лк. 5:27-32)

9 Çавăн хыççăн Иисус налук пухмалли çурт умĕпе
иртсе пынă. Вăл унта ларакан Матфей ятлă çынна
курнă та ăна: «Ман хыçăмран пыракан пул», – тенĕ.
Вара лешĕ тăнă та Иисус хыççăн кайнă.
10 Пĕррехинче Иисуспа Унăн вĕренекенĕсем пĕр
пӳртре апат çинĕ. Çавăн чухне налук пухакансемпе
çылăхлă çынсем нумайăшĕ пынă та вĕсемпе пĕрле
ĕçсе çинĕ. 11 «Мĕншĕн-ха сирĕн Вĕрентекенĕр
налук пухакансемпе тата çылăхлă çынсемпе пĕрле
ĕçсе çиет?» – тенĕ çакна курсан фарисейсем Унăн
вĕренекенĕсене. 12 Çак сăмахсене илтсен Иисус
фарисейсене çапла каланă: «Тухтăр сыввисене мар,
чирлисене кирлĕ. 13 „Çынсем парне кӳни мар, ырă
кăмăллă пулни кирлĕ Мана“, – тенĕ вĕт Çырнинче.
Кайăр та çакă мĕне пĕлтернине ăнкарса илме
тăрăшăр. Эпĕ тӳрĕ пурăнакансене мар,
çылăхлисене ӳкĕнме чĕнмешкĕн килнĕ».

*Типĕ тытасси çинчен ыйтни*

(Мк. 2:18-22; Лк. 5:33-39)

14 Çавăн чухне Ун патне Иоанăн вĕренекенĕсем
пынă те çапла ыйтнă: «Фарисейсем те, эпир те
нумай типĕ тытатпăр, Санăн вĕренекенӳсем
мĕншĕн типĕ тытмаççĕ?» 15 Иисус вĕсене çапла
каланă: «Туй ачисем кĕрӳ каччă хăйсемпе пĕрле
чухне кулянĕç-и? Анчах та акă вĕсенчен кĕрӳ
каччăна туртса илес кунсем çитĕç, çавăн чухне
вĕсем типĕ тытĕç. 16 Никам та кивĕ тумтир çине
çĕнĕ пир саплăк лартмасть. Апла тусан çĕнĕ
саплăкĕ кивĕ пирне тăпăлтарса кăларĕ, çĕтĕкĕ вара
татах пысăкланĕ. 17 Тин тунă хĕрлĕ эрехе те кивĕ
сăран хутаçа тултармаççĕ. Апла тусан хутаçĕ
çурăлса каять те, эрехĕ те юхса тухать, хутаçĕ те сая
каять. Çĕнĕ эрехе çĕнĕ сăран хутаçа тултараççĕ,
вара иккĕшĕ те упранса юлаççĕ».

*Иаир хĕрне чĕртни тата юн каякан хĕрарăма
сыватни*

(Мк. 5:21-43; Лк. 8:40-56)

18 Иисус вĕсене çак сăмахсене каланă чухне пĕр
пуçлăх Ун патне пынă та пуççапсах каланă: «Хĕрĕм
вилесле выртать, Эсĕ пырса ун çине аллуна хурсам,
вара вăл чĕрĕлĕччĕ». 19 Иисус тăнă та
вĕренекенĕсемпе пĕрле ун хыççăн утнă. 20 Çавăн
чухне юн кайнипе вун икĕ çул асапланакан пĕр
хĕрарăм хыçалтан пынă та Унăн тумтир аркине

сĕртĕннĕ. 21 «Унăн тумтирне сĕртĕнсенех
сывалăттăм», – тесе шухăшланă вăл хăй ăшĕнче.
22 Иисус çаврăннă та ăна асăрхаса çапла каланă:
«Хăюллă пул, хĕрĕм! Ĕненĕвӳ çăлчĕ сана». Хĕрарăм
вара çав самантрах сывалнă. 23 Унтан Иисус пуçлăх
килне кайнă. Пӳрте кĕрсен Вăл хăйсен йăлипе виле
çинче кĕвĕ калакансене, ним тума аптăранă
çынсене курнă. 24 Иисус вĕсене çапла каланă:
«Тухăр-ха кунтан, хĕр ача вилмен, вăл çывăрать
кăна». Çакна илтсен Иисусран кулма пуçланă.
25 Халăха кăларсан Вăл пӳлĕме кĕнĕ те хĕре
аллинчен тытнă, вара хĕр тăнă. 26 Çак ĕç пирки
йĕри-таврах хыпар сарăлнă.

### Икĕ суккăра тата чĕлхесĕр çынна сыватни

27 Иисус унтан кайнă чух икĕ суккăр çын Ун
хыççăн: «Эй, Давид йăхĕнчи Иисус, хĕрхенсем
пире!» – тесе кăшкăра-кăшкăра пынă. 28 Иисус пĕр
пӳрте кĕрсен, суккăрсем те Ун хыççăн кĕнĕ. «Эсир
ыйтнине Эпĕ тума пултарасса ĕненетĕр-и эсир?» –
тенĕ вĕсене Иисус. «Ĕненетпĕр, Хуçамăр!» – тенĕ
Ăна вĕсем. 29 Унтан Вăл суккăрсен куçĕсене
сĕртĕннĕ те çапла каланă: «Хăвăр ĕненнĕ пек
пултăр». 30 Вара вĕсем куракан пулнă. «Астăвăр, кун
çинчен никам та ан пĕлтĕр», – тенĕ хытарсах
вĕсене Иисус. 31 Анчах та тухса кайсанах вĕсем çав
таврара пур çĕрте те Ун çинчен калаçса çӳренĕ.
32 Вĕсем тухса кайнă чух Иисус патне усал ернĕ
чĕлхесĕр çынна илсе пынă. 33 Усалне хăваласа
кăларсан чĕлхесĕр çын калаçа пуçланă. «Израильте
кунашкалли нихăçан та пулманччĕ», – тесе калаçнă
халăх тĕлĕнсе. 34 Фарисейсем кăна çапла каланă:
«Усалсене Вăл усалсен пуçлăхĕн хăвачĕпе хăваласа
кăларать».

### Вырмалли нумай та, выраканĕ сахал

35 Иисус мĕн пур хуласемпе ялсем тăрăх унти
синагогăсенче вĕрентсе, Çӳлти Патшалăх çинчен
Ырă Хыпар пĕлтерсе, тĕрлĕ чир-чĕртен тата тĕрлĕ
халсăрлăхран сыватса çӳренĕ. 36 Ушкăн-ушкăн
халăха курсан Иисус вĕсене хĕрхеннĕ: арпашса та
саланса кайнă çынсем кĕтӳçĕсĕр сурăхсем пекех
пулнă. 37 Вара Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене çапла
каланă: «Вырмалли нумай та, выраканĕ сахал.
38 Çапла ĕнтĕ, ани çине выраканĕсене ятăр тесе,
ана Хуçине йăлăнăр».

*Вун икĕ апостол*
(Мк. 3:13-19; 6:7-13; Лк. 6:12-16; 9:1-6)

10 Унтан Иисус Хăйĕн вун икĕ вĕренекенне
чĕнсе илнĕ. Вăл вĕренекенĕсене, усал
сывлăшсене хăваласа кăларччăр тесе, вĕсене
пăхăнтарма, тĕрлĕ чир-чĕртен, тĕрлĕ халсăрлăхран
сыватма хăват панă. 2 Вун икĕ апостолăн ячĕсем
çаксем: пирвайхи – Петр текен Симон, унăн шăллĕ
Андрей, Зеведей Иаковĕпе унăн шăллĕ Иоанн,
3 Филипп, Варфоломей, Фома, налук пухакан
Матфей, Алфей Иаковĕпе Фаддей текен Леввей,
4 Симон Кананит тата Иуда Искариот. Çакă вара Ăна
сутаканни пулнă.
5 Çак вун икĕ вĕренекенне Иисус çапла каласа
вĕрентсе янă: «Иудейсем пурăнман çĕрсене ан
кайăр, Самари хулине те ан кĕрĕр. 6 Чи малтан
Израиль халăхĕ патне кайăр, вĕсем ĕнтĕ çĕтсе
кайнă сурăхсем пекех. 7 Çӳренĕ чухне вара: „Çӳлти
Патшалăх çывхарчĕ“, – тесе ӳкĕтлесе вĕрентĕр.
8 Чирлисене сыватăр, юхан-суранлисене тасатăр,
вилнисене чĕртĕр, усалсене хăваласа кăларăр.
Тӳлевсĕр илтĕр, тӳлевсĕрех парăр. 9 Хăвăрпа пĕрле
укçа таврашĕ ан илĕр: ылтăннине те, кĕмĕллине те,
пăхăррине те; 10 Çул çине хутаç та, тепĕр кĕпепе
пушмак та, туя та ан илĕр. Ĕçлекене мĕн кирлине
пама тивĕçлĕ. 11 Мĕнле те пулин хулана е яла
çитсен унта кам шанчăклине ыйтса пĕлĕр те
кайиччен ун патĕнче пурăнăр. 12 Пӳрте кĕрсен
ырă сунса: „Çак кил-çурта канăçлăх пултăр!“ – тесе
саламлăр. 13 Тивĕçлĕ кил-çурт пулсан канăçлăхăр ун
çине анĕ, тивĕçсĕр пулсан эсир ырă сунни хăвăрах
таврăнĕ. 14 Кам та пулин сире хапăл тумасан,
сăмахăра та итлемесен, çав кил-çуртран е хуларан
тухса кайнă чухне эсир пушмакăр çумĕнчи тусана
та силлесех хăварăр. 15 Чăн калатăп сире: суд
кунĕнче Содомпа Гоморра çĕрне çав хуларан
çăмăлтарах пулĕ».

*Çитес хĕсĕрлевсем*
(Мк. 13:9-13; Лк. 21:12-17)

16 «Акă Эпĕ сире кашкăрсем хушшине сурăхсене
янă пек яратăп. Ĕнтĕ эсир çĕлен пек вичкĕн ăслă,
кăвакарчăн пек йăваш пулăр. 17 Çынсенчен
сыхланăр, мĕншĕн тесен вĕсем сире судпа
айăплама тытса парĕç, хăйсен синагогисенче
хĕнĕç. 18 Вара сире Мана пула пуçлăхсемпе
патшасем патне илсе кайĕç. Вĕсем умĕнче тата
урăх халăх çыннисем умĕнче сирĕн Ман çинчен
çирĕплетсе пĕлтермелле пулĕ. 19 Сире суда тытса
парсан мĕн каласси, мĕнле каласси пирки ан
кулянăр, сирĕн калас сăмахăр çав самантра чĕлхе
çинчех пулĕ. 20 Мĕншĕн тесен эсир хăвăр мар,
сирĕнти Аçăр Сывлăшĕ мĕн каламаллине
калаттарĕ. 21 Тăванĕ – тăванне, ашшĕ ачине
вĕлерме тытса парĕ. Ачисем вара ашшĕ-амăшне
хирĕç кайĕç, вĕсене вилĕм кӳрĕç. 22 Ман ятăмшăн
сире пурте курайми пулĕç; кам вĕçне çитичченех
тӳсĕ, çав çăлăнĕ. 23 Сире пĕр хулара хĕсĕрлесен
эсир тепĕр хулана тарăр. Чăн калатăп сире: эсир
Израилĕн пур хулисене те çитме ĕлкĕриччен Этем
Ывăлĕ килĕ.
24 Вĕренекен вĕрентекенĕнчен аслă мар, тарçă та
хуçинчен аслă мар. 25 Вĕренекенĕ вĕрентекен пек
пулсан, тарçи хуçи пек пулсан çитет вара. Кил
хуçине Веельзевул терĕç пулсан, унăн кил-йышĕ
пирки пушшех те çапла каламĕç-и?»

*Камран хăрамалла*
(Лк. 12:2-7)

26 «Çапла вара, хăвăра хирĕç çынсенчен ан хăрăр:
пытарса хăварни те çиеле тухатех, вăрттăнни те

паллӑ пулатех. 27 Эпӗ сире тӗттӗмре каланине эсир
ҫутӑра калӑр, хӑлхаран каланине ял илтмелле
пӗлтерӗр. 28 Ӳт-пӗве пӗтерекенсенчен ан хӑрӑр,
вӗсем чуна пӗтерейменӗҫ. Хӑрасса вара ӳт-пӗве те,
чуна та тамӑкра пӗтерме пултараканран хӑрӑр.
29 Икӗ пӗчӗккӗҫӗ вӗҫен кайӑка пӗр ассарийлӗхе
сутмаҫҫӗ-и? Ҫапах вӗсенчен пӗри те Ҫӳлти Аҫӑр
ирӗккӗсӗр ҫӗре ӳкмест. 30 Сирӗн пуҫӑр ҫинчи ҫӳҫ
пӗрчисем те пӗтӗмпех шутра. 31 Ҫавӑнпа та ан
хӑрӑр: эсир, паллах, пӗчӗккӗҫӗ вӗҫен кайӑк
йышӗнчен хаклӑрах.
32 Ҫапла вара, кам та кам халӑх умӗнче Мана
ӗненнине пӗлтерет, Эпӗ те Ҫӳлти Аттем умӗнче ҫав
ҫын ҫинчен пӗлтерӗп. 33 Кам халӑх умӗнче Манран
тунать, Эпӗ те Ҫӳлти Аттем умӗнче унран тунӑп».

*Эпӗ канӑҫлӑх мар, хӗҫ кӳме килнӗ*

(Лк. 12:51-53; 14:26-27)

34 «Эпӗ ҫӗр ҫине канӑҫлӑх кӳме килнӗ тесе ан
шухӑшлӑр. Эпӗ канӑҫлӑх мар, хӗҫ кӳме килнӗ. 35 Эпӗ
ывӑлне – ашшӗнчен, хӗрне – амӑшӗнчен, кинне –
хунямӑшӗнчен уйӑрма килтӗм. 36 Ҫыншӑн хӑйӗн
кил-йышӗсемех тӑшман пулӗҫ. 37 Ашшӗне е амӑшне
Мана юратнинчен те ытларах юратакан Мана
тивӗҫлӗ мар. Ывӑлне е хӗрне Мана юратнинчен те
ытларах юратакан та Мана тивӗҫлӗ мар. 38 Кам
хӑйӗн асап хӗресне йӑтса Ман хыҫҫӑн пымасть, ҫав
Мана тивӗҫлӗ мар. 39 Хӑйӗн пурнӑҫне упраса
хӑваракан ӑна ҫухатӗ. Хӑйӗн пурнӑҫне Мана
халалласа ҫухатакан ӑна упраса хӑварӗ».

*Илес сӑвап*

(Мк. 9:41)

40 «Сире йышӑнакан Мана та хапӑл тӑвать. Мана
хапӑл тӑвакан Мана кунта Яракана та йышӑнать.
41 Пророка пророк пулнишӗн хапӑл тӑвакан
пророкпа танах сӑвап илӗ. Тӳрӗлӗхлӗ ҫынна тӳрӗ
пурӑннишӗн хапӑл тӑвакан та тӳрӗлӗхлӗ ҫынпа
танах сӑвап илӗ. 42 Чӑн калатӑп сире: кам ҫак
кӗҫӗннисенчен пӗрне Ман вӗренекенӗм пулнӑшӑн
пӗр курка та пулин сивӗ шыв ӗҫтерет, вӑл илес
сӑвапне ҫухатмӗ».

11 Хӑйӗн вун икӗ вӗренекенне ӑс парса каланӑ
хыҫҫӑн Иисус, ҫав хуларан тухса, вӗрентме
тата ӳкӗтлеме ытти хуласене кайнӑ.

*Иоанӑн вӗренекенӗсем тата Иисус*

(Лк. 7:18-35)

2 Иоанн вара тӗрмере ларнӑ чух Христос ӗҫӗсем
ҫинчен илтнӗ те хӑйӗн икӗ вӗренекенне:
3 «Килмелли Эсӗ-и е пирӗн урӑххине кӗтмелле?» –
тесе ыйтма Иисус патне янӑ. 4 Иисус вӗсене
хуравланӑ: «Мӗн курни-илтнине Иоана кайса
каласа кӑтартӑр: 5 суккӑррисем куракан пулаҫҫӗ,
уксаххисем ҫӳрекен пулаҫҫӗ, юхан-суранлисем
тасалаҫҫӗ, хӑлхасӑррисем илтекен пулаҫҫӗ,
вилнисем чӗрӗлсе тӑраҫҫӗ, чухӑннисем хушшинче
Ырӑ Хыпар сарӑлать. 6 Ман пирки иккӗленмен ҫын
телейлӗ».
7 Вӗсем кайсассӑн Иисус халӑха Иоанн ҫинчен
кала пуҫланӑ: «Эсир пуш хире мӗн курма кайрӑр?
Ҫилпе хумханса ларакан хӑмӑша-и? 8 Мӗн курма
кайрӑр вара эсир? Капӑр тумтирлӗ ҫынна курма-и?
Анчах та капӑр тумтир тӑхӑннӑ ҫынсем патша
ҫуртӗнче пурӑнаҫҫӗ. 9 Мӗн курма кайрӑр-ха эппин?
Пророка курма-и? Ҫапла, калатӑп сире, вӑл
пророкран та аслӑ. 10 „Акӑ Эпӗ Сан умӑнтан
хыпарҫӑма яратӑп, вӑл Сан валли ҫул хатӗрлесе
хурӗ“, – тенӗ Ҫырнинче. Вӑл шӑпах ҫавӑ. 11 Чӑн
калатӑп сире: этем йӑхӗнче Шыва кӗртекен
Иоанран аслӑраххи пулман, анчах та Ҫӳлти
Патшалӑхри чи кӗҫӗнни те унран аслӑ. 12 Шыва
кӗртекен Иоанран пуҫласа паян кунччченех Ҫӳлти
Патшалӑха тӑрӑшулӑхпа илеҫҫӗ, пит тӑрӑшакансем
ӑна тупаҫҫӗ. 13 Мӗншӗн тесен Иоанн киличчен мӗн
пур пророкла каланисене тата Моисей саккунне
пӗлтернӗ ӗнтӗ. 14 Эсир ҫак шухӑшӑма йышӑнма
хатӗр пулсан, калам: Иоанн вӑл – килмелле тенӗ
Илия. 15 Илтме хӑлха пурри илттӗр!
16 Кампа танлаштарам-ши ҫак ӑру ҫыннисене?
Вӗсем урамра ларакан ачасем евӗрлӗ, вӗсем
хӑйсен юлташӗсене ҫапла калаҫҫӗ: 17 „Эпир
сирӗншӗн шӑхличӗ каларӑмӑр – эсир ташламарӑр,
эпир сирӗншӗн хурлӑхлӑ юрӑ юрларӑмӑр – эсир
йӗмерӗр“. 18 Акӑ Иоанн килчӗ те – типӗ тытать, эрех
таврашӗ ӗҫмест. „Усал ернӗ ӑна“, – теҫҫӗ ҫынсем.
19 Этем Ывӑлӗ килчӗ те – ҫиет те, ӗҫет те. „Ку ҫын
ҫиме те, хӗрлӗ эрех ӗҫме те юратать, налук
пухакансемпе тата ҫылӑхлӑ ҫынсемпе туслӑ“, –
теҫҫӗ ҫавсемех. Анчах та Турӑ ӑслӑлӑхне ачисем
тӳрре кӑларчӗҫ ӗнтӗ».

*Ӳкӗнмен хуласене хуйхӑ пулӗ*

(Лк. 10:13-15)

20 Унтан Иисус Хӑй нумайрах хӑват кӑтартнӑ
хуласене ӳкӗнменшӗн ӳпкелеме тытӑннӑ: 21 «Хуйхӑ
пулӗ сана, Хоразин! Хуйхӑ пулӗ сана, Вифсаида!
Эсир курнӑ хӑватсене Тирпа Сидонра кӑтартнӑ
пулсан, вӗсем тахҫанах хуйхӑ тумтирӗ тӑхӑнса,
хурланса ҫылӑхӗсенчен ӳкӗннӗ пулӗччӗҫ. 22 Калатӑп
сире: суд кунӗнче Тирпа Сидон хулисене сирӗнтен
ҫӑмӑлтарах пулӗ. 23 Эсӗ те, хӑвна тӳпе таранах
мӑнна хуракан Капернаум хули, тамӑк тӗпнех анса
кайӑн. Сан урамусенче кӑтартнӑ хӑватсене
Содомра кӑтартнӑ пулсан вӑл паянхи кунччченех
ларнӑ пулӗччӗ. 24 Ҫапах та калатӑп сире: суд
кунӗнче Содом ҫӗрне санран ҫӑмӑлтарах пулӗ».

*Ман патӑма килӗр те канлӗх илӗр*

(Лк. 10:21-22)

25 Ҫавӑн чухне Иисус, сӑмахне малалла тӑсса,
ҫапла каланӑ: «Эй, Аттем, ҫӗрпе пӗлӗт Хуҫи! Эсӗ
ҫакна ӑслӑ-тӑнлисенчен пытарса ача пек
айваннисене пӗлмелле тунӑшӑн Сана мухтатӑп.
26 Ҫапла, Аттем! Санӑн ырӑ ирӗккӳ ҫавнашкал пулнӑ.
27 Аттем Мана йӑлтах панӑ. Ашшӗсӗр пуҫне Ывӑлне
никам та пӗлмест. Ашшӗне те Ывӑлӗсӗр пуҫне
никам та пӗлмест, Ывӑлӗ пӗлтерес тесен анчах
пӗлӗҫ. 28 Эй, эсир, йывӑр ҫӗклемпе халтан
кайнисем! Пурте Ман патӑма килӗр, Эпӗ сире
канлӗх парӑп. 29 Эпӗ йӑваш та лӑпкӑ кӑмӑллӑ,
ҫавӑнпа Ман туртам хушшине тӑрӑр, Манран

тĕслĕх илĕр, вара канлĕхĕре тупăр. 30 Мĕншĕн
тесен Ман лава туртма ырă, Ман çĕклемĕм çăмăл».

*Христос тата шăмат кун*

(Мк. 2:23-28; Лк. 6:1-5)

12 Нумаях та вăхăт иртмен, пĕр шăмат кун
Иисусăн тырă пуссипе иртсе пымалла пулнă.
Вĕренекенĕсен çиесси килнĕ те вĕсем пучахсене
тата-тата илсе тырă пĕрчисене çиме пуçланă.
2 Фарисейсем çакна курнă та Иисуса каланă: «Акă
Санăн вĕренекенӳсем шăмат кун тума юраманнине
тăваççĕ». 3 Иисус вĕсене çапла хуравланă:
«Пĕррехинче, Давид хăй тата унпа пĕрле пулнисем
выçăпа аптăрасан, вăл мĕн тунине вуламан-им
эсир? 4 Епле вăл, кĕлĕ çуртне кĕрсе, Турра
халалланă çăкăрсене çинĕ. Çав çăкăрсене унăн
хăйĕн те, унпа пĕрле пулнисен те çиме юраман вĕт-
ха, вĕсене пĕртен-пĕр священниксем кăна çиме
пултарнă. 5 Е тата шăмат кунсенче священниксем
Турă çуртĕнче шăмат кун тума хушман ĕçсене
тăваççĕ пулин те, вĕсем айăплă мар тенине эсир
саккунра вуламан-им? 6 Анчах та калатăп сире: халĕ
çакăнта Турă çуртĕнчен те Аслăраххи пур.
7 Çырнинче: „Çынсем парне кӳни мар, ырă кăмăллă
пулни кирлĕ Мана“, – тенине ăнланса илнĕ пулсан
эсир çак айăпсăр çынсене айăпламăттăр, 8 мĕншĕн
тесен Эпĕ, Этем Ывăлĕ, – шăмат кун хуçи те».

*Иисус алли типнĕ çынна сыватать*

(Мк. 3:1-6; Лк. 6:6-11)

9 Çавăнтан кайсан Иисус унти пĕр синагогăна
кĕнĕ. 10 Унта алли типнĕ çын пулнă. Иисуса
айăплама сăлтав тупас тесе синагогăрисем Унран:
«Шăмат кун чиртен сыватма юрать-и?» – тесе
ыйтнă. 11 Иисус вĕсене çапла каланă: «Хăйĕн
пĕртен-пĕр сурăхĕ шăмат кун шăтăка кĕрсе ӳксен,
сирĕнтен кам ăна туртса кăлармĕ? 12 Этем сурăхран
мĕн чухлĕ пахарах! Çапла вара, шăмат кун ырă ĕç
тума юрать». 13 «Аллуна тăс-ха», – тенĕ унтан Иисус
çав çынна. Лешĕ тăснă та, алли тӳрленсе тепри
пекех пулса тăнă. 14 Фарисейсем вара синагогăран
тухсанах Ăна вĕлерме кавар тунă. Анчах та Иисус,
çавна пĕлсе, унтан кайнă.

### Суйласа илнĕ Ачам

15 Ун хыççăн темĕн чухлĕ халăх пынă, Иисус пурне
те сыватнă. 16 Вĕсене Иисус Хăй çинчен каласа
çӳреме хушман. 17 Вăл çапла Исаия пророк урлă
Турă каланă çак сăмахсем пурнăçланччăр тесе тунă:
18 «Акă Манăн суйласа илнĕ, Манăн юратнă, чунăм
савнă Ачам. Эпĕ Ун çине Хам Сывлăшăма ярăп, Вăл
мĕн пур халăхсене тĕрĕслĕхе пĕлтерĕ. 19 Вăл
тавлашса, кăшкăрашса çӳремĕ, никам та Ун
сассине урамра илтеймĕ. 20 Тĕрĕслĕхе çиеле
кăлариччен Вăл хуçăла пуçланă хăмăша та хуçмĕ,
сӳне пуçланă çутаткăça та сӳнтермĕ. 21 Вăл пур
халăхшăн та шанчăк пулса тăрĕ».

*Усалсене Иисус мĕнле хăватпа хăваласа кăларать?*

(Мк. 3:20-30; Лк. 11:14-23; 12:10)

22 Унтан Иисус патне усал ернĕ суккăр тата
чĕлхесĕр çынна çавăтса пынă. Иисус ăна сыватнă,
çапла вара суккăр тата чĕлхесĕр çын калаçма та,
курма та пуçланă. 23 Иисус мĕн тунине курсан пĕтĕм
халăх тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. «Çакă Давид
йăхĕнчен Суйласа илни мар-и?» – тесе ыйтнă
çынсем. 24 Çавна илтсен фарисейсем вара çапла
каланă: «Усалсене Вăл урăх нимĕнле хăватпа та
мар, усалсен пуçлăхĕн, Веельзевулăн, хăвачĕпе
хăваласа кăларать». 25 Иисус, фарисейсен
шухăшĕсене пĕлсе, вĕсене çапла каланă: «Кирек
мĕнле патшалăх та хирĕçсе-пайланса кайсан
пушанса юлать; кирек мĕнле хула та, кил-йыш та
хирĕçсе-пайланса кайсан арканать. 26 Çавнашкалах,
шуйттан шуйттана хăваласа кăларать пулсан,
эппин вăл хăйпе хăй хирĕçет. Апла пулсан, унăн
патшалăхĕ епле тытăнса тăрайтăр? 27 Эпĕ усалсене
Веельзевул хăвачĕпе хăваласа кăларатăп пулсан,
апла сирĕн халăх ывăлĕсем кам хăвачĕпе хăваласа
кăлараççĕ? Çавăнпа сире суд тăвакансем те вĕсемех
пулĕç. 28 Эпĕ усалсене Турă Сывлăшĕпе хăваласа
кăларатăп пулсан, эппин, паллах, сирĕн патăра
Турă Патшалăхĕ çитнĕ пулать. 29 Е тата, вăйлă
çынна малтанах çыхса пăрахмасан, кам унăн
çуртне кĕрсе япалисене çаратса тухма пултарĕ-ха?
Паллах, çыхса пăрахсан тин унăн çуртне çаратайĕ.
30 Кам Ман майлă мар, çав Мана хирĕç; кам Манпа
пухмасть, çав салатса пĕтерет. 31 Çавăнпа калатăп
сире: этемсен кирек епле çылăхĕ те, хурлани те
каçарăнĕ, анчах та Святой Сывлăша хурлани
каçарăнмĕ. 32 Этем Ывăлне хирĕç сăмах калакана
каçарĕç, Святой Сывлăша хирĕç калакана вара
кунти пурăнăçра та, лери пурăнăçра та каçармĕç».

*Йывăçпа çимĕçĕ çинчен*

(Лк. 6:43-45)

33 «Йывăçне аван тетĕр пулсан çимĕçне те аван
тейĕр; йывăçне начар тетĕр пулсан çимĕçне те
начар тейĕр – йывăçа çимĕçне кура хаклаççĕ. 34 Эй,
çĕлен çурисем! Хăвăр усал пулсассăн епле-ха эсир
ырри çинчен калаçма пултаратăр? Этемĕн чĕри
мĕнпе тулнă, чĕлхи-çăварĕ те çавнах калать. 35 Ырă
çыннăн ырă кăмăлĕнчен ырри тухать, усал çыннăн
усал кăмăлĕнчен усалли тухать. 36 Çавăнпа та
калатăп сире: асăрханмасăр каланă кашни
сăмахшăн суд кунĕнче çынсен явап тытмалла пулĕ.
37 Мĕншĕн тесен каланă сăмахна кура Турă сана е
тӳрре кăларĕ, е айăплĕ».

*Хăват кăтартма ыйтни*

(Мк. 8:11-12; Лк. 11:29-32)

38 Çавăн хыççăн хăш-пĕр саккун вĕрентӳçисемпе
фарисейсем Иисуса: «Вĕрентекен! Эпир Эсĕ хăват
кăтартма пултарнине курасшăн», – тенĕ. 39 Иисус
вĕсене çапла тавăрса каланă: «Усал та пăсăк ăру
хăватшăн антăхать, анчах та Иона пророк
хăвачĕсĕр пуçне ăна нимĕнле хăват та пулмĕ.
40 Иона кит ăшĕнче виçĕ кун та виçĕ каç пулнă пек,
Этем Ывăлĕ те çĕр айĕнче виçĕ кун та виçĕ каç

пулĕ. 41 Суд кунĕ çитсен Ниневи çыннисем çак ăрупа
пĕрле чĕрĕлсе тăрĕç те ăна айăплĕç, мĕншĕн тесен
вĕсем Иона ӳкĕтленине илтсен ӳкĕннĕ пулнă. Акă
халĕ кунта Ионăран та Аслăраххи пур. 42 Суд кунĕ
çитсен кăнтăр енчи çĕр-шыври хĕрарăм патша çак
ăрупа пĕрле чĕрĕлсе тăрĕ те ăна айăплĕ, мĕншĕн
тесен вăл Соломон ăслăлăхне итлеме тĕнче
хĕрринченех килнĕ пулнă. Акă халĕ кунта
Соломонран та Аслăраххи пур».

*Усал сывлăш тавăрăнасси çинчен*
(Лк. 11:24-36)

43 «Çын ăшĕнчен тухсан усал сывлăш канлĕх
шыраса шывсăр вырăнсенче çапкаланса çӳрет,
анчах тупаймасть. 44 Вара вăл çапла шухăшлать:
„Хам тухнă çуртăма каялла тавăрăнам-ха“.
Тавăрăнсассăн пушă, тирпейлесе тасатнă çурт
курать. 45 Вара вăл каять те хăйпе пĕрле хăйĕнчен
те усалтарах тепĕр çичĕ сывлăша ертсе пырать.
Çавăнтах вĕсем ун ăшне кĕрсе пурăнма пуçлаççĕ.
Çав çынна вара малтанхинчен те начартарах
пулать. Çак усал ăрăва та çаплах пулĕ».

*Иисус Христос Амăшĕпе тăванĕсем*
(Мк. 3:31-35; Лк. 8:19-21)

46 Иисус халăха çак сăмахсене каласа тăнă вăхăтра
Унăн Амăшĕпе тăванĕсем Унпа калаçасшăн тулта
кĕтсе тăнă. 47 «Авă Аннӳпе тăванусем Санпа
калаçасшăн тулта кĕтсе тăраççĕ», – тенĕ Иисуса пĕр
çын. 48 «Кам Манăн Аннем? Камсем Манăн
тăванăмсем?» – тенĕ Иисус Хăйне çапла каланă
çынна. 49 Унтан вĕренекенĕсем çинелле аллипе
тĕллесе каланă: «Акă Манăн аннемпе тăванăмсем.
50 Мĕншĕн тесен кам Çӳлти Аттем ирĕкне
пурнăçласа пурăнать, çавă Манăн тăванăм та,
аннем те пулать».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăх*
(Мк. 4:1-9; Лк. 8:4-8)

13 Çав кунхинех Иисус килтен тухнă та тинĕс
хĕррине кайнă. Вăл унта вĕрентсе ларнă. 2 Ун
патне темĕн чухлĕ халăх пуçтарăннă, çавăнпа Унăн
кимĕ çине ларма тивнĕ. Мĕн пур халăх вара çыран
хĕрринче тăнă. 3 Иисус халăха ытарлăн каласа
нумай вĕрентнĕ. Вăл çапла каланă: «Пĕр акаçă
акана тухнă. 4 Акнă чухне хăш пĕрчисем çул
хĕррине ӳкнĕ, кайăксем вĕçсе пынă та çав
пĕрчĕсене сăхса пĕтернĕ. 5 Хăшĕ тата чуллă, сахал
тăпраллă çĕре ӳкнĕ, тăпри ăшăх пулнăран калча
часах шăтса тухнă. 6 Анчах та хĕвел тухсанах ăна
ĕнтсе янă, тымар ярайман калча вара типсе ларнă.
7 Хăшĕ тата пиçенлĕ вырăна ӳкнĕ, пиçен çитĕнсе
кайнă та калчана пусса лартнă. 8 Хăшĕ тата пулăхлă
çĕр çине ӳкнĕ те тулли пучах кăларнă: пĕр
пĕрчĕрен çĕр пĕрчĕ, тепри утмăл пĕрчĕ, тата тепри
вăтăр пĕрчĕ пултарнă. 9 Илтме хăлха пурри
илттĕр!»

*Ытарлăн калани çинчен*
(Мк. 4:10-12; Лк. 8:9-10)

10 «Мĕншĕн Эсĕ çынсене ытарлăн каласа
вĕрентетĕн?» – тесе ыйтнă Унран вĕренекенĕсем
çывăхарах пырса. 11 Иисус вĕсене çапла хуравланă:
«Мĕншĕн тесен сире Çӳлти Патшалăх
вăрттăнлăхĕсене пĕлме тивĕç панă, вĕсене вара –
паман. 12 Камăн пур, ăна татах парĕç, унăн
ытлашшипех пулĕ. Камăн çук, унăнне пур пеккине
те туртса илĕç. 13 Вĕсем пăхсан та курмаççĕ, итлесен
те илтмеççĕ, ăнланмаççĕ, çавăнпа вĕсене ытарлăн
калатăп та. 14 Исаия пророкла калани вĕсенче
пурнăçланĕ. Вăл çапла каланă: „Эсир хăлхапа
илтсен те ăнланаймăр, куçăрсемпе пăхсан та
кураймăр. 15 Çак çынсен чун-чĕри хытса ларнă,
хăлхисем те аран илтеççĕ, куçĕсем те хупă. Ĕнтĕ
вĕсен куçĕ курмасть, хăлхи илтмест, чун-чĕри
туймасть, çавăнпа та вĕсем, Мана сываттарас тесе,
Ман енне çавăрăнмаççĕ“. 16 Куçăрсем курнăран,
хăлхăрсем илтнĕрен эсир телейлĕ. 17 Чăн калатăп
сире: пророксемпе тӳрĕ пурăнакансем нумайăшĕ
эсир мĕн курнине курасшăнччĕ те – кураймарĕç,
эсир илтнине илтесшĕнччĕ те – илтеймерĕç».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăха ăнлантарни*
(Мк. 4:13-20; Лк. 8:11-15)

18 «Эппин акаçă çинчен каланă ытарлăх мĕне
пĕлтернине тăнлăр: 19 Çул хĕррине ӳкни Çӳлти
Патшалăх çинчен вĕрентнине илтсе те ăнланайман
çынна пĕлтерет. Ун патне шуйттан пырать те
чĕрине акнине вăрласа каять. 20 Чуллă çĕре ӳкни
Турă сăмахне илтсе ăна тӳрех хавасланса
йышăнакан çынна пĕлтерет, 21 анчах та унăн чун-
чĕри тымарсăр та иккĕленчĕк. Сăмахшăн хĕн
кăтартма е хĕсĕрлеме тытăнсан, вăл тӳрех
ĕненӳрен пăрăнать. 22 Пиçенлĕ вырăна ӳкни Турă
сăмахне илтекен çыннах пĕлтерет, анчах та ку
тĕнчери хĕвĕшӳ, пуянлăх илĕртĕвĕ ун чĕринчи
сăмаха пусса лартать те, сăмах вара тĕшĕсĕр
пулать. 23 Пулăхлă çĕр çине ӳкни Турă сăмахне
илтсе, ăнланса илекене пĕлтерет, ун чĕринче сăмах
тĕшĕ кăларать. Çапла вара, пĕринчен çĕр пĕрчĕ,
тепринчен утмăл пĕрчĕ, тата тепринчен вăтăр
пĕрчĕ пулать».

**Тулăпа çум курăкĕ çинчен каланă ытарлăх**

24 Иисус вĕсене тата тепĕр ытарлăх каласа
кăтартнă: «Çӳлти Патшалăха хăйĕн ани çине лайăх
вăрлăх акнă çынпа танлаштарма пулать. 25 Анчах та
çĕрле, пурте çывăрнă чухне, унăн тăшманĕ пынă та
тулă хушшине çум курăкĕ акса кайнă. 26 Калча ӳссе
пуç кăларсан вара çум курăкĕ те палăрнă. 27 Ана
хуçин чурисем ăна çапла пырса каланă: „Хуçамăр!
Эсĕ хăвăн ану çине лайăх вăрлăх акнăччĕ, епле
майпа халĕ унта йăлтах çум курăкĕ пусса илнĕ?“
28 „Темле тăшман хăтланнă çавна“, – тенĕ хуçи
вĕсене. „Çумлаттарас теместĕн-и, эпир кайса
çумлатпăр“, – тенĕ чурисем. 29 „Çук, çум курăкне
çумланă чух унпа пĕрле тулли те тăпалĕ, – тенĕ
хуçи. 30 – Выриччен хутăшах ӳсчĕр-ха, вырмара
вара выракансене çапла хушăп: çунтарса ямашкăн
малтан çум курăкне пухса кĕлтен-кĕлтен çыхăр,
туллине ман кĕлете пуçтарса хурăр“».

*Сарă пăрăç вăррипе кăвас тĕпĕ çинчен каланă ытарлăхсем*

(Мк. 4:30-34; Лк. 13:18-21)

31 Унтан Иисус вĕсене тепĕр ытарлăх каласа
кăтартнă: «Çӳлти Патшалăха сарă пăрăç вăррипе
танлаштарма пулать; ăна пĕр çын хăйĕн ани çине
акнă. 32 Сарă пăрăç вăрри ытти вăрăсенчен чи
пĕчĕкки пулин те, ӳссен вăл пахча çимĕçсенчен чи
çӳлли пулса тăрать. Вăл йывăç пекех паркаланса
каять, кайăксем вĕçсе пыраççĕ те унăн турачĕсем
хушшинче йăва çавăраççĕ».
33 Иисус вĕсене тата тепĕр ытарлăх каланă: «Çӳлти
Патшалăха кăвас тĕпĕпе танлаштарма пулать.
Хĕрарăм кăвас тĕпне илнĕ те виçĕ витре çăнăхпа
хутăштарса çăрнă, вара пĕтĕм чусти йӳçсе
хăпарнă».
34 Çаксене пурне те Иисус халăха ытарлăн каланă,
ытарлăхсăр нимĕн те вĕрентмен. 35 Вăл пророк
урлă Турă калани пурнăçлантăр тесе çакнашкал
вĕрентнĕ. «Çăварăма ытарлăн калама уçăп та тĕнче
пуçланнăранпах пытарăнса тăнине каласа
пĕлтерĕп», – тенĕ пулнă пророк.

## Тулăпа çум куракĕ çинчен каланă ытарлăха ăнлантарни

36 Унтан Иисус, халăхпа сывпуллашсан,
вĕренекенĕсемпе пĕрле килне кайнă. Пӳрте кĕрсен
вĕренекенĕсем Унран çум куракпа ана çинчен
каланă ытарлăха ăнлантарса пама ыйтнă. 37 Вăл
çапла ăнлантарнă: «Лайăх вăрлăх акаканĕ – Этем
Ывăлĕ. 38 Ана вара тĕнчене пĕлтерет, лайăх вăрлăх
– Турă Патшалăхĕн çыннисене, çум куракĕ
шуйттана парăннисене пĕлтерет. 39 Çум куракне
акакан тăшман – шуйттана, вырма вăхăчĕ – тĕнче
пĕтмĕшне, выраканĕсем ангелсене пĕлтереççĕ.
40 Çапла вара шуйттана парăннă çынсене тĕнче
пĕтмĕшĕнче çум куракĕ пекех суйласа пухса
çунакан вута пăрахĕç. 41 Этем Ывăлĕ Хăйĕн
ангелĕсене ярĕ те, вĕсем Унăн Патшалăхĕнчи
çылăха кĕртекенсене, усал тăвакансене пурне те
çумлĕç. 42 Вара вĕсене çунакан вута пăрахĕç: унта
шăл шатăртаттарса йĕни илтĕнĕ. 43 Ун чухне
сăваплисем Ашшĕн Патшалăхĕнче хĕвел пек
çуталĕç. Илтме хăлха пурри илттĕр».

## Çӳлти Патшалăх çинчен каланă тепĕр виçĕ ытарлăх

44 «Çӳлти Патшалăха тата ана çине чавса пытарнă
мулпа танлаштарма пулать. Вăл мула пĕр çын
тупнă та çавăнтах чавса пытарнă. Хайхискер
савăннипе пурлăхне кайса сутнă та çав анана
туяннă.
45 Çӳлти Патшалăха тата хаклă ĕнчĕ шыракан
купсапа танлаштарма пулать. 46 Пĕррехинче вăл
хаклăран та хаклă ĕнчĕ курнă та кайса мĕн пур
пурлăхне сутса çав ĕнчĕне туяннă.
47 Çӳлти Патшалăха тата сĕреке-тетелпе
танлаштарма пулать. Пулăçăсем çав сĕреке-тетеле
тинĕсе янă та, унта тĕрлĕ йышши пулă кĕнĕ.
48 Сĕреке-тетел тулсан ăна пулăçăсем çыран
хĕррине туртса кăларнă, унтан ларса юрăхлă
пуллине суйласа илнĕ те савăта янă, юрăхсăррине
кăларса ывăтнă. 49 Тĕнче пĕтмĕшĕнче те çаплах
пулĕ: ангелсем килĕç те усаллисене сăваплисенчен
суйласа илĕç. 50 Вара усаллисене çунакан вута
пăрахĕç: унта шăл шатăртаттарса йĕни илтĕнĕ».
51 «Çаксене пурне те ăнлантăр-и?» – тесе ыйтнă
Иисус вĕренекенĕсенчен. «Ăнлантăмăр, Хуçамăр», –
тенĕ лешсем. 52 Вара Иисус вĕсене çапла каланă:
«Çӳлти Патшалăх çинчен илтсе пĕлнĕ кашни саккун
вĕрентӳçине кил хуçипе танлаштарма пулать. Çав
хуçа хăй пурлăхне упракан вырăнтан киввине те,
çĕннине те илсе тухать».

*Назарет çыннисем Иисуса ĕненменни*

(Мк. 6:1-6; Лк. 4:16-30)

53 Çак ытарлăхсене каласа пĕтернĕ хыççăн Иисус
унтан кайнă. 54 Вăл Хăй ӳснĕ хулана пынă та унти
синагогăра халăха вĕрентнĕ. Унăн вĕрентĕвĕнчен
çынсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. «Çакнашкал
ăслăлăх тата хăват кăтартмалăх вăй ăçтан тухать-
ши Унăн? – тенĕ вĕсем. 55 – Платник ывăлĕ çеç мар-
им вара Вăл? Унăн Амăшĕ Мария ятлă вĕт-ха?
Иаков, Иосий, Симон, Иуда Унăн тăванĕсем мар-и
вара? 56 Унăн аппăшĕсем те пурте кунтах
пурăнмаççĕ-и? Эппин çавнашкал пĕлӳ ăçтан тухать
Унăн?» 57 Çапла вĕсем Унăн сăмахĕсене ĕненесшĕн
пулман. Иисус вара вĕсене каланă: «Хисеплемен
пророк пулмасть, хисеплемесен те ăна тăван çĕр-
шывĕнче тата килĕнче кăна хисеплемеççĕ».
58 Вĕсем ĕненменрен Иисус унта хăватсем нумаях
туман вара.

*Шыва кĕртекен Иоанн вилĕмĕ*

(Мк. 6:14-19; Лк. 9:7-9)

14 Çав вăхăтра Иисус пирки çӳрекен сас-хура
Галилея пуçлăхĕн Иродăн хăлхине те кĕнĕ.
2 Вара вăл хăйĕн улпут таврашĕсене çапла каланă:
«Ку çын – Шыва кĕртекен Иоанн, вилĕмрен чĕрĕлсе
тăнăран вăл хăватсем кăтартать те». 3 Ирод хăйĕн
Филипп ятлă пиччĕшĕн арăмне, Иродиадăна,
качча илнĕ пулнă. Çав хĕрарăма пула вăл Иоана
тытса çыхтарса тĕрмене хуптарнă. 4 Мĕншĕн тесен
Иоанн ăна: «Санăн инкӳпе пурăнма юрамасть», –
тесе ӳпкеленĕ. 5 Ирод ăна çавăншăн
вĕлерттересшĕн те пулнă, анчах халăхран хăранă.
Халăх Иоана пророк тесе шутланă. 6 Пĕррехинче
вара, Ирод хăйĕн çуралнă кунне уявланă чухне,
Иродиадăн хĕрĕ хăнасем умĕнче ташласа Иродăн
кăмăлне кайнă. 7 «Эпĕ сана тупа тусах шантаратăп,
– тенĕ ăна çавăнпа Ирод, – эсĕ мĕн ыйтнине йăлтах
парăп». 8 Хĕр вара амăшĕ вĕрентнипе çапла
каланă: «Шыва кĕртекен Иоанн пуçне тирĕк çине
хурса çакăнта илсе килсе пар». 9 Патша салхуланнă,
анчах та хăнасем умĕнче тупа тунăран хĕр кăмăлне
тивĕçтерме хушнă. 10 Унтан хăй çыннисене тĕрмене
Иоанн пуçне кастарма янă. 11 Ĕнтĕ унăн пуçне
тирĕкпе çĕклесе пырса хĕре тыттарнă, вăл ăна
амăшне илсе кайса панă. 12 Вĕренекенĕсем вара

Иоанн ӳтне пырса илнӗ те ҫӗре пытарнӑ. Унтан
вӗсем ҫакӑн ҫинчен Иисуса кайса пӗлтернӗ.

*Пилӗк пин ҫынна тӑрантарни*

(Мк. 6:30-44; Лк. 9:10-17; Ин. 6:1-14)

13 Иисус ҫавна илтсен ҫын ҫук вырӑна пӗчченех
кимӗпе ишсе кайнӑ. Халӑх, ҫакӑн ҫинчен пӗлсен,
хуласенчен тухса Ун хыҫҫӑн ҫыран хӗррипе ҫуран
утнӑ. 14 Кимӗ ҫинчен ансан Иисус унта ҫынсем
нумай пулнине курнӑ. Вара Иисус, хӗрхенсе, вӗсен
хушшинчи чирлисене сыватнӑ. 15 Каҫ пуласпа
вӗренекенӗсем Ун патне пырса ҫапла каланӑ:
«Кунта ҫын пурӑнман вырӑн, каҫ та пулса килет
ӗнтӗ; ялсене кайса хӑйсем валли ҫимелли туянма
халӑха яр». 16 «Вӗсен каймалла мар, ҫимелли
вӗсене эсир хӑвӑр парӑр», – тенӗ вӗренекенӗсене
Иисус. 17 Лешсем Иисуса каланӑ: «Пирӗн кунта пурӗ
те пилӗк ҫӑкӑрпа икӗ пулӑ кӑна». 18 «Вӗсене Мана
илсе килсе парӑр-ха», – тенӗ Иисус. 19 Унтан Вӑл
халӑха ҫерем ҫине ларма хушнӑ, Хӑй пилӗк ҫӑкӑрпа
икӗ пулла илсе ҫӳлелле пӑхнӑ та Турра тав тунӑ.
Вара Иисус ҫӑкӑрсене хуҫа-хуҫа вӗренекенӗсене
тыттарнӑ, лешсем ҫӑкӑр татӑкӗсене халӑха валеҫсе
панӑ. 20 Пурте ҫисе тӑраннӑ; юлнӑ татӑкӗсене тата
вун икӗ кунтӑк туллиех пухнӑ. 21 Хӗрарӑмсемпе
ачасене шутламасан, ҫиекенӗсем пилӗк пин ҫынна
яхӑн пулнӑ.

*Иисус шыв ҫийӗпе утни*

(Мк. 6:45-52; Ин. 6:15-21)

22 Ҫавӑн хыҫҫӑнах Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене
кимӗ ҫине ларса тинӗс леш енне Хӑйӗнчен маларах
ишсе каҫма хушнӑ, Хӑй халӑха ӑсатма юлнӑ.
23 Халӑхпа сывпуллашсан Вӑл пӗчченлӗхре кӗлтума
ту ҫине улӑхнӑ, ҫӗрле те унта пӗчченех пулнӑ. 24 Ҫав
вӑхӑтра кимӗ тинӗс варрине ҫитнӗ ӗнтӗ. Ҫил
хирӗҫле пулнӑран кимме хумсем лӑсканӑ. 25 Тул
ҫутӑласпа вара Иисус вӗренекенӗсем патне тинӗс
ҫийӗпе утса пынӑ. 26 Вӗренекенӗсем, Вӑл тинӗс
ҫийӗпе утса пынине курсан, пӑлханса ӳкнӗ те: «Куҫа
мӗлке курӑнать», – тенӗ. Сехрисем хӑпнипе вӗсем
кӑшкӑрсах янӑ. 27 Иисус вӗсене ҫав самантрах сасӑ
парса: «Хастар пулӑр! Ку – Эпӗ, ан хӑрӑр!» – тенӗ.
28 «Хуҫам! – тенӗ Ӑна Петр. – Енчен те Ку Эсех
пулсан, эппин мана та Хӑв патна шыв ҫийӗпе пыма
хуш». 29 «Кил», – тенӗ Иисус. Петр вара кимӗрен
тухса шыв ҫийӗпе Иисус патне утнӑ. 30 Анчах та ҫил
вӑйлине асӑрхасан вӑл хӑранипе пута пуҫланӑ.
«Хуҫам! Ҫӑлсам мана!» – тесе кӑшкӑрса янӑ вӑл.
31 Иисус ҫавӑнтах аллине тӑсса ӑна ярса тытнӑ. «Эй,
ҫителӗксӗр ӗненекен, – тенӗ ӑна Иисус, – мӗншӗн
эсӗ иккӗленсе кайрӑн?» 32 Вӗсем кимӗ ҫине
ларсанах ҫил лӑпланнӑ. 33 Кимӗ ҫинчисем Ун патне
пырса, пуҫҫапса ҫапла каланӑ: «Эсӗ чӑнах та Турӑ
Ывӑлӗ!»

*Геннисаретра чирлисене сыватни*

(Мк. 6:53-56)

34 Тинӗс урлӑ ишсе каҫсан вӗсем Геннисарет ҫӗрне
ҫитнӗ. 35 Унта пурӑнакансем Иисуса палласа илнӗ
те ҫав таврана хыпар янӑ. Вара Иисус патне мӗн
пур чирлӗ ҫынсене илсе пыра пуҫланӑ. 36 «Тумтирӳ
аркине те пулин сӗртӗнме ирӗк парсам», – тесе
йӑлӑннӑ вӗсем Ӑна. Сӗртӗнекеннисем вара
сывалнӑ.

*Ваттисен йӑли-йӗркине тытса пырасси ҫинчен*

(Мк. 7:1-23)

15 Ҫавӑн хыҫҫӑн Иисус патне Иерусалимри
саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем пынӑ та
ҫапла каланӑ: 2 «Мӗншӗн Санӑн вӗренекенӳсем
ваттисен йӑлине пӑхӑнмасӑр ҫиес умӗн аллисене
ҫумаҫҫӗ?» 3 Иисус вӗсене ҫапла хуравланӑ: «Эсир
мӗншӗн тата хӑвӑр йӑла-йӗркӗре Турӑ хушнинчен
мала хуратӑр? 4 „Аҫу-аннӳне хисепле“ тата „Ашшӗне
е амӑшне усал сӑмах калакана вилӗм ҫиттӗр“ тесе
Турӑ каланӑ-ҫке-ха. 5 Эсир вара: „Кам хӑй ашшӗне е
амӑшне парассине Турра асӑнса парать, ҫав ашшӗ-
амӑшӗ умӗнче парӑмлӑ мар“, – тесе вӗрентетӗр.
Ҫапла каласа эсир хӑвӑр йӑла-йӗркешӗн Турӑ пил-
хушӑвне пӑрахӑҫлатӑр. 7 Эй, икӗ питлӗскерсем!
Сирӗн ҫинчен Исаия пророк Турӑ сӑмахӗсемпе
аван каланӑ: 8 „Ҫак ҫынсем чӗлхи-ҫӑварӗпе Ман
патӑмалла ҫывхараҫҫӗ, сӑмахпа Мана хисеплеҫҫӗ,
анчах чун-чӗрипе Манран питӗ аякра. 9 Вӗсем этем
шухӑшласа кӑларнӑ вӗрентӗве, йӑла-йӗркене
вӗрентеҫҫӗ пулсан, вӗсем Мана пуҫҫапни усӑсӑр“».
10 Унтан Иисус халӑха чӗнсе ҫапла каланӑ: «Итлӗр
те ӑнланса илӗр: 11 Ҫынна ҫӑвара кӗрекенни мар,
ҫӑвартан тухаканни ирсӗрлетет». 12 Ҫав вӑхӑтра
вӗренекенӗсем Иисус патне пынӑ та ҫапла каланӑ:
«Пӗлетӗн-и, ҫак сӑмахсене илтсен фарисейсем питӗ
кӳренчӗҫ». 13 «Манӑн Ҫӳлти Аттем акман кирек епле
ӳсен-тӑран та кӑкланӗ, – тавӑрнӑ вара Иисус. 14 –
Фарисейсемшӗн ан кулянӑр, вӗсем суккӑрсене
ҫавӑтса пыракан суккӑрсем. Енчен те суккӑра
суккӑр ҫавӑтса пырать пулсан, вӗсем иккӗшӗ те
шӑтӑка кӗрсе ӳкӗҫ». 15 «Ху ытарлӑ каланине пире
ӑнлантарса парсамччӗ», – тесе ыйтнӑ Унран Петр.
16 Иисус вара ҫапла каланӑ: «Сирӗн те ӑс-тӑнӑр
халичченех усӑлса ҫитеймерӗ-и? 17 Ҫӑвара
кӗрекенни пурте вар-хырӑма кӗрсе тулашах
тухнине халиччен те ӑнланмастӑр-и? 18 Ҫӑвартан
тухаканни вара – чун-чӗререн тухать, ҫынна Турӑ
умӗнче ҫавӑ ирсӗрлетет. 19 Мӗншӗн тесен ҫак усал
шухӑшсем пурте: ҫын вӗлересси, мӑшӑра
улталасси, аскӑнланасси, вӑрласси, судра суйса
пӗлтересси, хурласси чун-чӗререн тухаҫҫӗ. 20 Ҫынна
Турӑ умӗнче ҫавсем ирсӗрлетеҫҫӗ. Алӑ ҫумасӑр
ҫини вара ҫынна ирсӗрлетмест».

*Хананей хӗрарӑмӗн ӗненӗвӗ*

(Мк. 7:24-30)

21 Унтан Иисус Тирпа Сидон ҫӗрне тухса кайнӑ.
22 Ун патне ҫавӑнти пӗр хананей хӗрарӑмӗ пынӑ та:
«Эй, Хуҫам, Давид йӑхӗн Ывӑлӗ, хӗрхенсем мана!
Хӗрӗм усал ернипе питӗ асапланать», – тенӗ
кӑшкӑрсах. 23 Иисус ӑна хирӗҫ пӗр сӑмах та чӗнмен.
Вӗренекенӗсем Ун патне пынӑ та: «Ку хӗрарӑма
кайма хуш-ха, вӑл пӗрмай пирӗн хыҫран
кӑшкӑрашса пырать», – тенӗ. 24 «Турӑ Мана
Израиль ӑрӑвӗн ҫӗтсе кайнӑ сурӑхӗсем патне кӑна

янӑ», – тесе тавӑрнӑ Иисус. 25 Ҫапах та хӗрарӑм
пынӑ та Ун умне чӗркуҫленсе ларса: «Хуҫам!
Пулӑшсам мана!» – тенӗ. 26 Иисус вара ҫапла
тавӑрнӑ: «Ачасем ҫиес ҫӑкӑра йытӑсене пӑрахса
пани аван мар». 27 «Ҫапли ҫапла та-ха, Хуҫам, – тенӗ
хӗрарӑм, – анчах йытӑсем те хуҫисен сӗтелӗ ҫинчен
ӳкнӗ тӗпренчӗксене ҫиеҫҫӗ-ҫке». 28 Иисус вара ӑна
ҫапла тавӑрнӑ: «Эй, хӗрарӑм! Санӑн ӗненӗвӳ
чӑнласах та ҫирӗп, ху ыйтнӑ пек пултӑр эппин».
Вара унӑн хӗрӗ ҫав самантрах сывалнӑ.

### Иисус чирлисене сыватни

29 Унтан кайсан Иисус Галилея тинӗсӗ хӗррине
ҫитнӗ, вара пӗр сӑрт ҫине хӑпарнӑ та ҫавӑнта
ларнӑ. 30 Ун патне пит нумай халӑх пухӑннӑ.
Ҫынсем хӑйсемпе пӗрле уксах-чӑлахсене,
суккӑрсене, чӗлхесӗрсене, сусӑрсене тата ытти
чирлисене йышлӑн илсе пынӑ, вӗсене Иисус умне
вырттарнӑ. Иисус вӗсене сыватнӑ. 31 Халӑх вара
чӗлхесӗррисем калаҫнине, сусӑррисем тӳрленнине,
уксаххисем ҫӳренине, суккӑррисем куракан
пулнине курса тӗлӗннӗ. Пурте Израиль Туррине
мухтанӑ.

### *Тӑватӑ пин ҫынна тӑрантарни*

(Мк. 8:1-10)

32 Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене чӗнсе илсе ҫапла
каланӑ: «Ҫак халӑха Эпӗ шеллетӗп: вӗсем ӗнтӗ виҫӗ
кун хушши Манпа пӗрле, ҫимелли те вӗсен нимӗн
те ҫук. Ҫул ҫинче халтан каясран Ман вӗсене
выҫӑлла кӑларса ярас килмест». 33 «Кунта, ҫын
пурӑнман вырӑнта, ҫакӑн чухлӗ халӑха
тӑрантармалӑх ӑҫтан ҫӑкӑр тупас пирӗн?» – тенӗ
Ӑна вӗренекенӗсем. 34 «Сирӗн миҫе ҫӑкӑр пур?» –
ыйтнӑ Иисус. «Ҫичӗ ҫӑкӑрпа темиҫе пӗчӗк пулӑ», –
тавӑрнӑ лешсем. 35 Вара Иисус халӑха ҫерем ҫине
ларма хушнӑ. 36 Унтан ҫав ҫичӗ ҫӑкӑрпа пулла илсе
Турра тав тунӑ та вӗренекенӗсене хуҫа-хуҫа
тыттарнӑ, вӗренекенӗсем халӑха валеҫсе панӑ.
37 Пурте ҫисе тӑраннӑ. Юлнӑ татӑкӗсене тата ҫичӗ
карҫинкка туллиех пухнӑ. 38 Хӗрарӑмсемпе
ачасемсӗр пуҫне, ҫиекенӗсем пурӗ тӑватӑ пин ҫын
пулнӑ. 39 Кайран Иисус, халӑхпа сывпуллашса, кимӗ
ҫине ларнӑ та Магдала ҫӗрне ишсе кайнӑ.

### *Тӳперен хӑват кӑтартма ыйтни*

(Мк. 8:11-13; Лк. 12:54-56)

16 Унтан Иисус патне фарисейсемпе
саддукейсем пынӑ та, Ӑна тӗрӗслес тесе,
тӳперен хӑват кӑтартма ыйтнӑ. 2 Вӑл вара вӗсене
ҫапла хуравланӑ: «Каҫхине эсир: пӗлӗт хӗрелет –
уяр пулать тетӗр. 3 Ирхине эсир: пӗлӗт йӑм-хӗрлӗ –
паян ҫанталӑк пӑсӑлать тетӗр. Икӗ питлӗскерсем!
Тӳпери паллӑсене уйӑрма пӗлетӗр, вӑхӑт
паллисене уйӑрма пӗлейместӗр-и? 4 Усал та пӑсӑк
ӑру хӑватшӑн антӑхать, анчах та Иона пророк
хӑвачӗсӗр пуҫне ӑна нимӗнле хӑват та пулмӗ».
Унтан Иисус вӗсене пӑрахса кайнӑ.

### *Фарисейсемпе саддукейсен кӑвас тӗпӗ ҫинчен*

(Мк. 8:14-21)

5 Тинӗс тепӗр енне ишсе каҫнӑ чух Унӑн
вӗренекенӗсем хӑйсемпе пӗрле ҫӑкӑр илме маннӑ.
6 «Асӑрханӑр, – тенӗ вӗсене Иисус, – фарисейсемпе
саддукейсен кӑвас тӗпӗнчен сыхланӑр». 7 «Эпир
ҫӑкӑр илме маннӑран ҫапла калать пулӗ Вӑл», –
тесе шухӑшланӑ вӗренекенӗсем хӑйсен ӑшӗнче.
8 Иисус вара вӗсен шухӑшӗсене пӗлсе ҫапла каланӑ:
«Эй, ҫителӗксӗр ӗненекенсем! Мӗншӗн эсир хӑвӑр
ӑшӑрта ҫӑкӑр илменни ҫинчен шухӑшлатӑр?
9 Халиччен ӑнланмастӑр-и? Пилӗк ҫӑкӑрпа пилӗк
пин ҫынна тӑрантарнине, юлашкине тата темиҫе
кунтӑк пухнине астумастӑр-им? 10 Тата ҫичӗ ҫӑкӑрпа
тӑватӑ пин ҫынна тӑрантарнине, юлашкине миҫе
карҫинкка пухнине те манса кайрӑр-им?
11 „Фарисейсемпе саддукейсен кӑвас тӗпӗнчен
сыхланӑр“, – тесе Эпӗ ҫӑкӑр пирки каламаннине
епле-ха ӑнланаймастӑр?» 12 Иисус кӑвас тӗпӗнчен
мар, фарисейсемпе саддукейсен вӗрентӗвӗнчен
сыхланма каланине вӗренекенӗсем тинех тавҫӑрса
илнӗ.

### *Иисус кам пулнине Петр пӗлтерни*

(Мк. 8:27-30; Лк. 9:18-21)

13 Филипп Кесарийӗ таврашӗнчи ҫӗрсене пырсан
Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсенчен ҫапла ыйтнӑ:
«Ҫынсем Мана, Этем Ывӑлне, кам вырӑнне
хураҫҫӗ?» 14 «Пӗрисем – Шыва кӗртекен Иоанн
вырӑнне, теприсем – Илия вырӑнне, хӑшӗ-пӗрисем
тата Иеремия е пӗр-пӗр урӑх пророк вырӑнне
хураҫҫӗ», – тавӑрнӑ вӗсем. 15 «Эсир хӑвӑр вара Мана
кам вырӑнне хуратӑр?» – тенӗ Иисус вӗсене. 16 «Эсӗ
– Чӗрӗ Туррӑн Ывӑлӗ, Христос», – тавӑрнӑ вара
Петр текен Симон. 17 «Телейлӗ эсӗ, Иона ывӑлӗ
Симон, мӗншӗн тесен сана ҫав чӑнлӑха этем мар,
Манӑн Ҫӳлти Аттем уҫса пачӗ. 18 Ӗнтӗ Эпӗ сана
калатӑп: эсӗ – Петр . Эпӗ ӗненекен ушкӑнсем
йӗркеленӗ чухне эсӗ вӗсемшӗн чул никӗс пулӑн.
Вара ҫав Чиркӗве тамӑк хапхи те ҫӗнтереймӗ. 19 Эпӗ
сана Ҫӳлти Патшалӑха кӗмелли алӑкӑн уҫҫине
парӑп. Эсӗ ҫӗр ҫинче мӗне чарӑн, ҫавӑ тӳпере те
чаруллӑ пулӗ; эсӗ ҫӗр ҫинче мӗне чармӑн, ҫавӑ
тӳпере те ирӗклӗ пулӗ». 20 Ҫавӑн чухне Вӑл
вӗренекенӗсене Хӑй, Иисус, Турӑ Суйласа илни
пулнине никама та калама хушман.

### *Иисус Хӑй вилсе чӗрӗлесси ҫинчен калани*

(Мк. 8:31–9:1; Лк. 9:22-27)

21 Ҫавӑнтан вара Иисус вӗренекенӗсене Хӑйӗн
Иерусалима каймалли ҫинчен, унта ятлӑ-сумлӑ
ҫынсемпе аслӑ священниксенчен тата саккун
вӗрентӳҫисенчен нумай асап курмалла пуласси
ҫинчен кала пуҫланӑ. Тата Вӑл вӗренекенӗсене
Хӑйне вӗлерессi ҫинчен, виҫҫӗмӗш кунне чӗрӗлсе
тӑрасси ҫинчен те каласа ӑнлантарнӑ. 22 Ҫавӑн
чухне Петр Ӑна аяккалла чӗнсе илнӗ те хирӗҫлесе
ҫапла каланӑ: «Эй, Хуҫамӑр! Турӑ хӑтартӑрах!
Санпала унашкалли ан пултӑрах!» 23 Иисус вара
Петр енне ҫаврӑнса каланӑ: «Кай Ман патӑмран,
шуйттан! Эсӗ Мана илӗртсе иккӗлентеретӗн; эсӗ

Турра юрăхли çинчен мар, этеме юрăхли çинчен
шухăшлатăн». 24 Унтан Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсене çапла каланă: «Кам Ман хыççăн
пыракан пулас тет, çав хăй çинчен манса, хăйĕн
асап хĕресне йăтса, Ман хыççăн пытăр. 25 Мĕншĕн
тесен хăйĕн пурăнăçне упраса хăварас текен ăна
çухатĕ. Хăйĕн пурăнăçне Мана халалласа çухатакан
ăна тупĕ. 26 Çын, пĕтĕм тĕнчене хăй аллине илсен
те, хăй чунне сиен тусан, ăна мĕн усси пулĕ? Çын
хăй чунне мĕн хакпа илейĕ? 27 Этем Ывăлĕ Çӳлти
Ашшĕн мухтавĕпе, ангелĕсемпе килĕ те пурне те
ĕçĕсене кура тавăрса парĕ. 28 Чăн калатăп сире:
çакăнта тăракансенчен хăшĕ-пĕрисем Патша пулса
килекен Этем Ывăлне курмасăр та вилмĕç».

*Иисус Христос сăн-сăпачĕ улшăнни*

(Мк. 9:2-13; Лк. 9:28-36)

17 Пĕр ултă кун иртсен Иисус Петра тата
пĕртăван Иаковпа Иоана кăна Хăйпе пĕрле
илнĕ те çӳллĕ ту çине улăхнă. 2 Çавăнта вара вĕсен
умĕнчех Унăн сăн-сăпачĕ улшăннă: сăнĕ хĕвел пек
ялтăраса кайнă, тумтирĕ чăлт шуррăн çуталса тăнă.
3 Сасартăк вĕсене Иисуспа калаçса тăракан
Моисейпа Илия курăннă. 4 Вара Петр Иисуса çапла
каланă: «Хуçамăр! Пире кунта епле аван. Кăмăлу
пулсан, эпир кунта виçĕ хӳшĕ тăвăпăр: пĕрне – Сан
валли, теприне – Моисей валли тата теприне –
Илия валли». 5 Петр çапла каласа тăнă чухнех
сасартăк вĕсене çутă пĕлĕт хупласа илнĕ. Пĕлĕт
çинчен вара: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Манăн
ырă кăмăлăм Унра; Ăна итлĕр», – текен сасă
илтĕннĕ. 6 Çакна илтсен Иисусăн вĕренекенĕсем
хăранипе çĕр çумне тĕшĕрĕлнĕ. 7 Иисус
вĕренекенĕсем патне пынă та вĕсене сĕртĕнсе
каланă: «Тăрăрах, ан хăрăр». 8 Пуçĕсене çĕклесе
пăхсан вĕсем Иисуссăр пуçне урăх никама та
курман.
9 Ту çинчен аннă чухне вара Иисус
вĕренекенĕсене çапла хушнă: «Этем Ывăлĕ
вилĕмрен чĕрĕлсе тăриччен çак курăну пирки
никама та ан калăр». 10 «Мĕншĕн-ха саккун
вĕрентӳçисем Христосран маларах Илия килмелле
теççĕ?» – ыйтнă Унран вĕренекенĕсем. 11 Иисус
вĕсене çапла тавăрса каланă: «Малтан Илия килсе
йăлтах хатĕрлесе хумалла тени тĕрĕсех. 12 Анчах та
калатăп сире: Илия килнĕччĕ ĕнтĕ, ăна çынсем
паллаймарĕç, унпа хăйсем мĕн тăвас тенине
турĕçех. Вĕсем Этем Ывăлне те çавнашкал асап
кăтартĕç». 13 Вара вĕренекенĕсем хăйсене Иисус
Шыва кĕртекен Иоанн пирки каланине ăнланса
илнĕ.

*Усал сывлăш ернĕ ачана сыватни*

(Мк. 9:14-29; Лк. 9:37-43)

14 Иисуспа вĕренекенĕсем халăх пухăннă çĕре
çитсессĕнех Ун патне пĕр çын çывхарнă та Ун умне
чĕркуçленнĕ. 15 «Хуçамăр, ывăлăма хĕрхенсем: уйăх
çĕнелсен вăл усал ернипе питĕ асапланать;
тăтăшах е вута, е шыва сикет, – тенĕ çав çын. 16 –
Эпĕ ăна Санăн вĕренекенӳсем патне илсе
килнĕччĕ, анчах вĕсем ăна сыватаймарĕç». 17 «Эй,
ĕненмен, пăсăк ăру! Тата хăçанччен Манăн сирĕнпе
пулмалла-ши? Хăçанччен Манăн сире тӳсмелле-
ши? Ачине Ман патăма илсе килĕр эппин», –
тавăрса каланă Иисус. 18 Унтан Вăл усала чарнă та,
лешĕ ача ăшĕнчен тухса тарнă. Арçын ача çав
самантрах сывалнă. 19 Çавăн чухне вĕренекенĕсем
ушкăнран уйăрăлса Иисус патне пынă та: «Мĕншĕн
эпир усала хăваласа кăлараймарăмăр?» – тесе
ыйтнă. 20 Иисус вара вĕсене çапла хуравланă:
«Мĕншĕн тесен эсир çителĕксĕр ĕненетĕр. Чăн
калатăп сире: эсир пĕр пĕрчĕк анчах ĕненсессĕн те,
çак тăва: „Кунтан çавăнта куçса лар“, – тесен, вăл
куçса ларĕччĕ. Эсир пултарайманни нимĕн те
пулмĕччĕ. 21 Усал-тĕсел тавраш‌не типĕ тытнипе
тата кĕлтунипе çеç хăваласа кăларма пулать ».

*Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен тепĕр хут калани*

(Мк. 9:30-32; Лк. 9:43-45)

22 Галилейăра пурăннă чухне Иисус
вĕренекенĕсене каланă: «Этем Ывăлне çынсен
аллине тытса парĕç, 23 Ăна вĕлерĕç, виççĕмĕш
кунне Вăл чĕрĕлсе тăрĕ». Çакна илтсен
вĕренекенĕсем хуйха ӳкнĕ.

**Турă Çурчĕшĕн тӳлемелли налук çинчен**

24 Иисуспа вĕренекенĕсем Капернаумра чухне
Петр патне Турă Çурчĕ валли налук пухакансем
пырса каланă: «Сирĕн Вĕрентекен налук укçи тӳлет-
и?» 25 «Тӳлĕ-ха», – тенĕ Петр. Унтан, Петр пӳрте
кĕрсен, сăмах хушма ĕлкĕричченех Иисус ăна
çапла каланă: «Симон, эсĕ мĕнле шухăшлатăн? Çĕр
çинчи патшасене хырçă-налук камсен тӳлемелле?
Хăйсен çĕр-шывĕнче пурăнакансен е пăхăнтарнă
ют халăхсен?» 26 «Ют халăхсен», – тенĕ Петр. Вара
Иисус ăна каланă: «Эппин хăйсен çĕр-шывĕнче
пурăнакансем ирĕклĕ, вĕсен тӳлемелле мар.
27 Çапах та налук пухакансем кăмăлсăр ан юлччăр
тесен, тинĕс хĕррине кайса вăлта яр та чи малтан
лекнĕ пулла илсе çăварне уçса пăх. Унăн çăварĕнче
эсĕ пĕр статир тупăн. Çав укçа иксĕмĕршĕн те
тӳлеме çитĕ, ăна вĕсене пар».

*Ачасем пек пулăр*

(Мк. 9:33-37; Лк. 9:46-48)

18 Çав вăхăтра вĕренекенĕсем Иисус патне
пырса ыйтнă: «Çӳлти Патшалăхра аслăраххи
кам пулĕ?» 2 Иисус пĕр пĕчĕк ачана кăчăк туртса
чĕннĕ те ăна вĕсен умне тăратнă. 3 «Чăн калатăп
сире: улшăнаймасан, ача пек пулаймасан эсир
Çӳлти Патшалăха кĕреймĕр. 4 Çавăнпа та кам хăйне
çак ача пек кĕçĕне хума пултарайĕ, çавă Çӳлти
Патшалăхра аслăраххи пулĕ. 5 Кам çакнашкал пĕр
ачана Ман ятăмшăн хапăл тăвать, çав Мана
йышăнать».

*Илĕртӳсем çинчен*

(Мк. 9:42-48; Лк. 17:1-2)

6 «Кам Мана ĕненекен çак пĕчĕкскерсенчен пĕрне
те пулин илĕртсе çылăха кĕртет, çавăн мăйне

арман чулĕ çакса тинĕс тĕпне путарсан, ăна хăйне
лайăхрах пулĕччĕ. 7 Илĕртсе çылăха кĕртнĕрен çак
тĕнче хур курать. Илĕртӳсем пулаççех, анчах та
илĕртсе çылăха кĕртекен çынна хуйхă пулĕ. 8 Сана
аллу е уру çылăх тума илĕртет пулсан, ăна кас та
ывăтса яр. Алăсăр е урасăр ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕни
ал-ураллăнах тамăка, сӳнми вута пăрахнинчен
саншăн лайăхрах. 9 Сана куçу çылăх тума илĕртет
пулсан, ăна чавса кăларса пăрах та ывăтса яр: икĕ
куçупа тамăк вутне пăрахнинчен хăрах куçупа
ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕни саншăн лайăхрах».

*Çухалнă сурăх çинчен каланă ытарлăх*

(Лк. 15:3-7)

10 «Астăвăр, çак пĕчĕкскерсем çине хисеплемесĕр
ан пăхăр. Калатăп сире: вĕсен тӳпери ангелĕсем
Çӳлти Аттем сăнне яланах курса тăраççĕ. 11 Мĕншĕн
тесен Этем Ывăлĕ çухалнисене шыраса тупса çăлма
килнĕ . 12 Епле шутлатăр эсир? Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр
çыннăн çĕр пуç сурăх пур тейĕпĕр. Вăл, пĕр сурăхне
çухатсан, тăхăр вун тăххăрăшне ту хушшинче
хăварса, çухалнине шырама каймĕ-и? 13 Чăн
калатăп сире: çав çын, сурăхне тупсассăн, уншăн
ытти çухалман тăхăр вун тăхăр сурăхĕнчен те
ытларах савăнĕ. 14 Сирĕн Çӳлти Аçăрăн ирĕкĕ те
çавнашкалах: Вăл çак пĕчĕкскерсенчен пĕрне те
çухатасшăн мар».

*Ĕненекен тăвану çылăха кĕрсен*

(Лк. 17:3)

15 «Ĕненекен тăвану сана усал туса çылăха кĕрсен,
кай та унпа куçа-куçăн калаç, ӳпкеле. Вăл сана
итлесен, эсĕ тăванна каялла тавăртăн пулать.
16 Итлемесен, хупа пĕрле икĕ-виçĕ çын илсе кай.
Курни-илтнине çирĕплетекен икĕ е виçĕ çын
пулсан, кирек епле сăмах та тĕрĕс пулать. 17 Вĕсене
те итлес темесен вара ун çинчен ĕненекен
ушкăнрисене каласа кăтарт. Ĕненекен ушкăн та ăна
ӳкĕте кĕртеймесен, вăл вара саншăн урăх халăх
çынни пекех, налук пухакан пекех пултăр.
18 Чăн калатăп сире: эсир çĕр çинче мĕне чарăр,
çавă тӳпере те чаруллă пулĕ. Çĕр çинче мĕне
чармăр, çавă тӳпере те ирĕклĕ пулĕ. 19 Татах чăн
калатăп сире: çĕр çинче сирĕн хушшăртан иккĕн
пĕр шухăшлă пулса Турра тархасласан, Çӳлти Аттем
вĕсем ыйтнине тивĕçтерĕ. 20 Мĕншĕн тесен Ман
ятăмпа иккĕн е виççĕн пухăннă çĕрте Эпĕ те
вĕсемпе пулатăп».

### Пĕр-пĕрне каçарасси çинчен

21 Çавăн чухне Петр Иисусран пырса ыйтнă:
«Хуçам, хама усал тунă ĕненекен тăванăма ман
миçе хутчен каçармалла? Çичĕ хутчен-и?» 22 «Çичĕ
хутчен теместĕп, çичĕ хут çитмĕл таранах тетĕп, –
тавăрнă ăна Иисус. 23 – Çакна Эпĕ акă мĕншĕн
калатăп: Çӳлти Патшалăх вăл çак ытарлăх евĕрлĕ.
Пĕр патша чурисен парăмне тĕрĕслеме шухăш
тытнă. 24 Хайхискер парăм укçи шутла пуçласан, ун
патне вунă пин талант парăмлă пĕр çынна илсе
пынă. 25 Парăмне тӳлесе татма укçи пулманран
патша чурине хăйне те, унăн арăмĕпе ачисене те,
мĕн пур пурлăхне те сутса парăма татма хушнă.
26 Çакна пĕлсен çав чура ун умне ӳксе тархасланă:
„Патшам! Мана усал ан тусам, эпĕ сана пĕтĕмпех
тӳлесе татăп“. 27 Патша вара çав чурана хĕрхеннĕ
те, ирĕке кăларса, парăмне каçарнă. 28 Анчах та
патша патĕнчен тухнă-тухманах çак чура юлташне
тĕл пулнă. Юлташĕ ăна нумаях та мар, çĕр
динарийлĕх парăмлă пулнă. Хайхи чура ăна çулса
илнĕ те: „Парăмна тавăрса пар!“ – тесе пăва
пуçланă. 29 „Мана усал ан тусам, эпĕ сана пĕтĕмпех
тӳлесе татăп“, – тесе тархасланă юлташĕ ун умне
ӳксе. 30 Чура ун сăмахĕсене итлесшĕн те пулман,
парăмне тӳлесе татиччен ăна тĕрмене тытса
хуптарнă. 31 Çакна курса тăнă ытти юлташĕсем
хуйха ӳкнĕ. Вĕсем патша патне кайнă та пулса
иртнĕ ĕç-пуç çинчен йăлтах каласа кăтартнă.
32 Патша вара хайхи чурана чĕнтерсе çапла каланă:
„Эй, усал чура! Эсĕ мана тархасларăн та, эпĕ санăн
пĕтĕм парăмна каçартăм. 33 Эп сана каçарнă пекех
санăн та юлташна каçармалла марччĕ-и вара?“
34 Çилли тулса çитнипе патша çав чурана
асаплантаракансен аллине панă та пĕтĕм парăмне
тӳлесе татиччченех тертлентерме хушнă. 35 Çылăха
кĕнĕ тăванăрсене чĕререн каçармасан Çӳлти Аттем
те сирĕнпе çаплах тăвĕ».

*Уйăрăласси çинчен*

(Мк. 10:1-12)

19 Çак сăмахсене вĕçлесен Иисус Галилейăран
кайнă та Иордан леш енчи çĕрсем урлă Иудея
тăрăхне пынă. 2 Ун хыççăн нумай халăх пынă, унта
Вăл чирлисене сыватнă. 3 Иисус патне фарисейсем
пынă та, Ăна илĕртсе тĕрĕслес тесе, ыйту панă:
«Упăшкин арăмне кирек епле сăлтавпа та уйăрса
яма юрать-и?» 4 Иисус вара çапла тавăрса каланă:
«Пултаракан чăн малтанах çынсене арçын тата
хĕрарăм пулмалла туни çинчен вуламан-им эсир?
5 Унтан каланă: „Çавăнпа çын ашшĕ-амăшне хăварĕ
те арăмĕпе пĕрлешĕ, вара иккĕн пĕр ӳт пулĕç“.
6 Ĕнтĕ вĕсем иккĕн мар, пĕр ӳт. Çапла вара, Турă
пĕрлештернине этем ан уйăртăр», – тенĕ. 7 «Епле-ха
тата Моисей: упăшки арăмĕпе уйăрăлнă чухне унăн
арăмне уйăрăлу хучĕ çырса памалла тесе хушса
хăварнă?» – тенĕ Ăна фарисейсем. 8 Иисус вĕсене
каланă: «Чунăрсем усăлса çитейменрен Моисей
сире арăмсене уйăрса яма ирĕк панă, малтанах
апла пулман. 9 Эпĕ вара сире калатăп: кам хăй
арăмне аскăн ĕçпе айăпа кĕмен çĕртех уйăрса ярса
урăххине качча илет, çав мăшăра улталас çул çине
тăрать. Уйăрăлнă хĕрарăма качча илни те мăшăра
улталаниех пулать ». 10 «Арăмпа çак çирĕп
йĕркесене пăхăнса пурăнас пулсан, авланиччен
авланманни», – теççĕ вĕренекенĕсем Иисуса. 11 «Эп
каланине пурте мар, кама Турă ăнланма тивĕç
панă, çавă ăнланĕ, – тавăрнă вĕсене Иисус. 12 –
Мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕри çуралассах арлă-арăмлă
пурăнма юрăхсăр çуралать, хăшне çынсем
каярахпа юрăхсăра кăлараççĕ. Теприсем тата Çӳлти

Патшалăхшăн тăрăшас тесе хăйсемех арлă-арăмлă
пурăнма килĕшмеççĕ. Кама ăнланма тивĕç панă,
çавă ăнлантăр».

*Иисус ачасене пиллет*

(Мк. 10:13-16; Лк. 18:15-17)

13 Çавăн чухне çынсем ачисене Иисус патне
аллине хурса кĕлтутарма илсе пынă;
вĕренекенĕсем вара вĕсене Иисуса кансĕрлеме
чарнă. 14 Анчах та Иисус çапла каланă: «Ачасене
Ман патăма ярăр, килме ан чарăр, мĕншĕн тесен
Çӳлти Патшалăх вĕсем пеккисемшĕн». 15 Вара Вăл
ачасем çине аллине хурса пилленĕ те урăх çĕре
кайнă.

*Иисуспа пĕр пуян çамрăк*

(Мк. 10:17-31; Лк. 18:18-30)

16 Иисус патне пĕр çын пынă. «Ырă Вĕрентекен!
Ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулас тесен манăн мĕнле ырă
ĕç тумалла-ши?» – тенĕ вăл. 17 «Мĕншĕн эсĕ Мана
ырă тетĕн? – хуравланă ăна Иисус. – Пĕртен-пĕр
Турăсăр пуçне никам та ырă мар . Ĕмĕрлĕх
пурăнăçа кĕрес тесен пил-хушусене пурнăçласа
пурăн». 18 «Хăшсене?» – ыйтнă лешĕ Иисусран. «Ак
çаксене, – тавăрнă Иисус. – Ан вĕлер, мăшăрна ан
ултала, ан вăрла, судра суйса ан пĕлтер, 19 аçу-
аннӳне хисепле; çывăх çыннуна хăвна юратнă пек
юрат». 20 «Эпĕ вăл пил-хушусене пурне те мĕн
ачаранах пăхăнса пурăнатăп-ха, тата мĕн тумалла-
ши манăн?» – тенĕ Ăна çамрăк. 21 Иисус çамрăк
çынна çапла каланă: «Пĕр кăлтăксăр пулас килсен
кайса хăвăн пурлăхна сут та укçине чухăнсене
валеççе пар, вара сан валли пурлăх пĕлĕт çинче
пулĕ. Ху кил те Ман хыççăн пыракан пул». 22 Çак
сăмахсене илтсен çамрăк çын хуйха ӳкнĕ те
пăрăнса утнă, мĕншĕн тесен унăн пурлăхĕ питĕ
нумай пулнă. 23 «Чăн калатăп сире, – тенĕ вара
Иисус вĕренекенĕсене, – пуян çынна Çӳлти
Патшалăха кĕме питĕ йывăр. 24 Тата çакна хушса
калам: пуяна Турă Патшалăхне кĕрессинчен тĕвене
йĕп çăрти витĕр тухма çăмăлтарах». 25 «Кам
çăлăнма пултарĕ-ха эппин?» – тенĕ вĕренекенĕсем
çав сăмахсене илтнĕ хыççăн пит тĕлĕнсе. 26 Иисус
вĕсем çине тинкерсе пăхнă та çапла каланă: «Этем
ăна тума пултараймĕ, Турă вара пурне те
пултарать». 27 Çавăн чухне Петр Ăна хирĕç каланă:
«Акă эпир хамăрăн мĕн пуррине пĕтĕмпех
хăвартăмăр та Сан хыççăн пыракансем пултăмăр.
Уншăн пире мĕн лекĕ?» 28 «Чăн калатăп сире, – тенĕ
вĕсене Иисус, – пулас çĕнĕ тĕнчере, Этем Ывăлĕ
Хăйĕн чаплă престолĕ çине ларсан, эсир те, Ман
хыççăн пыракансем, Израилĕн вун икĕ ăрăвĕн тӳри
пулмашкăн вун икĕ престол çине ларăр. 29 Кам та
кам кил-çуртне, тăванĕсене, ашшĕ-амăшне,
арăмне, ачи-пăчине, ани-çаранне Ман ятăмшăн
пăрахса хăварнă, Турă ăна çĕр хут та ытларах
тавăрса парĕ, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă тăвĕ. 30 Малтисем
чылайăшĕ кайра пулĕç, кайрисем малта пулĕç».

### Тара тытнă çынсем çинчен каланă ытарлăх

20 Унтан Иисус çапла каланă: «Çӳлти Патшалăх
вăл хуçа евĕрлĕ. Çав хуçа ирхине ирех исĕм
çырли пахчинче ĕçлеттермешкĕн çынсене тара
тытма тухнă. 2 Кунне пĕр динарий тӳлеме калаçса
татăлса, вăл тара кĕрĕшекенсене хăй пахчине
ĕçлеме янă. 3 Пĕр тăхăр сехет тĕлнелле хуçа каллех
тухнă та пасар вырăнĕнче тара кĕрĕшес текен,
ĕççĕр ларакан ытти çынсене курнă. 4 „Эсир те
манăн исĕм çырли пахчине ĕçлеме кайăр, тивĕçлĕ
чухлĕ сире те тӳлĕп“, – тенĕ хуçа вĕсене те. Лешсем
вара кайнă. 5 Кăнтăрлапа тата кăнтăрла иртни виçĕ
сехетсенче тухсан та хуçа çаплах тунă. 6 Унтан вара,
кăнтăрла иртни пилĕк сехетсенче, вăл каллех пасар
вырăнне пынă та ĕççĕр ларакан урăх çынсене курса
çапла каланă: „Кунĕпех ĕçе кĕрĕшеймерĕр-и,
ахалех ларатăр-и?“ 7 „Пире тара тытакан пулмарĕ
çав“, – тавăрнă лешсем ăна. „Эсир те ман пахчама
ĕçлеме кайăр, мĕн тӳлемеллине сире тӳлĕç“, – тенĕ
хуçа вĕсене. 8 Каç пулсан хайхи пахча хуçи хăйĕн
кил-çуртне пăхса тăракана çапла каланă: „Тара
кĕрĕшнисене чĕнсе кил те каярахран ĕçлеме
пуçланисенчен тытăнса малтан ĕçлеме
пуçланисене пурне те укçа тӳле“. 9 Кăнтăрла иртни
пилĕк сехетсенче ĕçлеме тухнисем пынă та пĕрер
динарий ĕç укçи илнĕ. 10 Ирхине ирех ĕçлеме
тухнисем пынă та: „Пире ытларах тӳлет пулĕ-ха“, –
тесе шухăшланă. Анчах вĕсем те, калаçса килĕшнĕ
пекех, пĕрер динарий илнĕ. 11 Хайхискерсем укçине
илсен пахча хуçине ӳпкеле пуçланă. 12 „Кусем,
кайран килнисем, пĕр сехет пек ĕçлерĕç те,
пирĕнпе, кун каça шăрăхра тар тăкса
тертленекенсемпе, танах илчĕç“, – тенĕ вĕсем.
13 Хуçи вара вĕсенчен пĕрне çапла хуравланă:
„Тусăм, эпĕ сана кӳрентермерĕм-çке. Кĕрĕшнĕ
чухне эпир санпа пĕр динарийлĕх калаçса
татăлмарăмăр-им вара? 14 Ĕçлесе илнĕ укçуна ил те
каях. Эпĕ çак кайран кĕрĕшнине те сана тӳленĕ
чухлех парас тетĕп. 15 Хамăн пурлăхăмпа хамăн
хуçаланма ирĕк çук-им манăн? Е эпĕ ырă пулнăран
эсĕ кĕвĕç куçлă?“ 16 Çапла ĕнтĕ кайрисем малта
пулĕç, малтисем кайра пулĕç. Мĕншĕн тесен чĕнни
нумай та – суйласа илни сахал ».

*Иисус Хăй вилĕмрен чĕрĕлесси çинчен виççĕмĕш хут калани*

(Мк. 10:32-34; Лк. 18:31-34)

17 Иисус, Иерусалима кайнă чухне, çул çинче Вун
иккĕшне Хăй патне чĕнсе илнĕ те çапла каланă:
18 «Акă ĕнтĕ эпир Иерусалималла хăпарса
пыратпăр, унта Этем Ывăлне аслă священниксемпе
саккун вĕрентӳçисен аллине тытса парĕç. Вĕсем
Ăна суд туса вĕлерме йышăнĕç. 19 Унтан Этем
Ывăлне урăх халăх çыннисен аллине мăшкăл
кăтартма, чĕн пушăпа хĕнеме, пăталама тытса
парĕç. Виççĕмĕш кунне Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе
тăрĕ».

*Зеведей ывăлĕсем ыйтни*
(Мк. 10:35-45)
20 Çавăн чухне Зеведей арăмĕ хăйĕн икĕ ывăлĕпе
пĕрле Иисус патне пынă. Вăл Иисуса ӳксе пуççапсах
темĕн тархасланă. 21 «Сана мĕн кирлĕ?» – ыйтнă
унран Иисус. Зеведей арăмĕ Ăна çапла каланă: «Çак
икĕ ывăлăма Хăвăн Патшалăхунта пĕрне Хăвăнтан
сылтăм енне, тепĕрне сулахай енне лартма
шантарсамччĕ». 22 «Хăвăр мĕн ыйтнине хăвăр та
пĕлместĕр, – тавăрнă вара Иисус. – Эпĕ ĕçес асап
куркине ĕçме, Эпĕ кĕрес асап шывĕпе тĕне кĕме
пултарайăр-и? » «Пултаратпăр», – тенĕ ывăлĕсем.
23 «Эпĕ ĕçес асап куркине сире те ĕçме лекĕ, Эпĕ
кĕрес асап шывĕпе сире те тĕне кĕме тивĕ , анчах
Хамран сылтăм енне те, сулахай енне те лартаканĕ
Эпĕ мар. Аттем вăл вырăнсене кам валли
хатĕрленĕ, çавсем ларĕç». 24 Çак сăмахсене илтсен
тепĕр вунă вĕренекенĕ икĕ пĕртăвана питĕ тарăхса
кайнă. 25 Иисус вара вĕсене чĕнсе илсе çапла
каланă: «Халăхсен патшисем халăхпа хуçаланнине,
пуçлăхсем те халăха пăхăнтарнине эсир пĕлетĕр.
26 Сирĕн хушшăрта вара апла пулмалла мар: хăвăр
хушшăрта асли пулас текенĕн ыттисемшĕн тарçă
пулмалла. 27 Хăвăр хушшăрта малти пулас текенĕн
ыттисемшĕн чура пулмалла. 28 Этем Ывăлĕ те
Хăйшĕн тăрăштарма килмен, Хăй çынсемшĕн
тăрăшас тесе, нумайăшне çăлмашкăн Хăй чунне
тӳлевлĕхе пама килнĕ».

*Икĕ суккăра сыватни*
(Мк. 10:46-52; Лк. 18:35-43)
29 Иисуспа вĕренекенĕсем Иерихон ятлă хуларан
тухнă чухне Ун хыççăн темĕн чухлĕ халăх пынă.
30 Çавăнта çул хĕрринче ларакан икĕ суккăр çын
Иисус иртсе пырать тенине илтсен: «Эй, Хуçамăр,
Давид йăхĕн Ывăлĕ, хĕрхенсем пире!» – тесе
кăшкăра пуçланă. 31 Халăх вĕсене шăпланма хушнă,
анчах лешсем тата хыттăнрах: «Эй, Хуçамăр, Давид
йăхĕн Ывăлĕ, хĕрхенсем пире!» – тесе кăшкăрнă.
32 Вара Иисус чарăннă та суккăрсене çывăхарах
чĕнсе илсе: «Эсир Манран мĕн ыйтасшăн?» – тенĕ.
33 «Эй, Хуçамăр! Пирĕн куракан пуласчĕ», – тенĕ Ăна
суккăрсем. 34 Иисус, хĕрхенсе, вĕсен куçĕсене
сĕртĕннĕ те, икĕ суккăр çын çав самантрах куракан
пулнă. Вара вĕсем те Иисус хыççăн кайнă.

*Иисус Христос Иерусалим хулине кĕни*
(Мк. 11:1-11; Лк. 19:28-38; Ин. 12:12-19)
21 Иисуспа вĕренекенĕсем Иерусалималла
çывхарса пынă. Çавăн чухне, Елеон тăвĕ
патĕнчи Виффагине çитсен, Иисус икĕ вĕренекенне
2 çапла хушса янă: «Çак хăвăр умăрти яла кайăр,
кĕнĕ-кĕменех эсир унта тихаллă, кăкарса хунă ашак
амине курăр. Эсир ăна вĕçертсе Ман патăма
çавăтса килĕр. 3 Кам та пулин сире: „Мĕн
хăтланатăр?“ – тесен, эсир ашаксем Хуçамăра кирлĕ
тесе тавăрăр, вара сире вĕсене тӳрех парса ярĕç».
4 Çакă пĕтĕмпех Турă пророк урлă калани
пурнăçланма пулса иртнĕ. Пророк çапла каланă
пулнă: 5 «Сион хĕрне калăр: акă йăваш кăмăллă
Патшу сан патна тихаллă, ĕçе кӳлĕннĕ ашак ами
çине утланса çывхарать». 6 Вĕренекенĕсем вара яла
кайнă та Иисус хушнă пек тунă. 7 Ашак амипе
тихине çавăтса пырса, вĕсем хăйсен тумтирĕсене
ашаксем çине хунă, Иисус çав тумтирсем çине
ларнă. 8 Темĕн чухлĕ халăх хăйсен тумтирĕсене
Иисус умне çул тăрăх сарса пынă, теприсем тата
йывăç турачĕсем касса çул тăрăх пăрахса пынă.
9 «Давид йăхĕн Ывăлне осанна ! Хуçа Турă ячĕпе
Килекен мухтавлă! Çӳл тӳпере те осанна!» – тесе
кăшкăрнă Иисус умĕнче те, хыçĕнче те пыракан
халăх. 10 Иисус Иерусалима пырса кĕрсен пĕтĕм
хула хускалса кайнă. «Кам-ши Ку?» – тĕлĕнсе каланă
хула халăхĕ. 11 «Ку вăл Иисус, Галилейăри
Назаретран тухнă Пророк», – тенĕ çынсем.

*Иисус Турă Çуртĕнчи сутуçăсене хăваласа кăларни*
(Мк. 11:15-19; Лк. 19:45-48; Ин. 2:13-22)
12 Иисус Турă Çуртне пынă та суту-илӳ тăвакансене
пурне те унтан хăваласа кăларса янă. Вăл укçа
улăштаракансен сĕтелĕсене, кăвакарчăн
сутакансен тенкелĕсене тӳнтере-тӳнтере тухнă.
13 «Çырнинче çапла каланă: „Манăн çуртăма кĕлĕ
çурчĕ тейĕç“. Эсир вара ăна вăрă-хурах йăви туса
хунă», – тенĕ вĕсене Иисус. 14 Турă Çуртĕнче Ун
патне суккăрсемпе уксах-чăлахсем пынă, Иисус
вĕсене сыватнă. 15 Иисус тĕлĕнмелле ĕçсем тунине
курсан тата ачасем те: «Давид йăхĕн Ывăлне
осанна!» – тесе мухтаса кăшкăрнине илтсен аслă
священниксемпе саккун вĕрентӳçисем питĕ
çилленсе кайнă. 16 «Çаксем Сан пирки мĕн
каланине илтетĕн-и?» – тенĕ вĕсем Иисуса.
«Илтетĕп, – хуравланă Иисус, – „пĕчĕк ачасемпе
кăкăр ачисен чĕлхи-çăварĕпе Хăвна мухтава
кăларăн“ тенĕ Çырнинче. Эсир çавна нихăçан та
вуламан-им?» 17 Вара Иисус вĕсене пăрахса кайнă
та хуларан тухса Вифанире çĕр каçнă.

*Смоква йывăççине ылханни. Ĕненӳ вăйĕ*
(Мк. 11:12-14, 20-24)
18 Ирхине хулана тавăрăннă чухне Унăн çиес
килсе кайнă. 19 Вăл çул хĕрринче смоква йывăççине
асăрханă. Иисус йывăç патнерех пынă та ун çинче
çулçăсăр пуçне урăх ним те тупайман. «Сан çинче
текех ĕмĕрне те çимĕç ан пултăр», – тенĕ Иисус
смоква йывăççине. Смоква çав самантрах хăрса
ларнă. 20 Çакна курсан вĕренекенĕсем тĕлĕнсех
кайнă. «Епле-ха смоква йывăççи пĕр самантрах
хăрса ларчĕ?» – тенĕ вĕсем. 21 «Чăн калатăп сире, –
тенĕ Иисус вĕсене, – эсир ĕненӳллĕ пулсан,
иккĕленмесен, Эпĕ смоква йывăççипе мĕн тунине
кăна тумăр-ха. Енчен те эсир çак тăва: „Вырăнунтан
тапран та тинĕсе кĕрсе ӳк“, – тесен, çапла пулĕ те.
22 Эсир кĕлĕ тунă чухне ĕненсе кирек мĕн ыйтсан
та, ыйтнине йăлтах илĕр».

*Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?*
(Мк. 11:27-33; Лк. 20:1-8)
23 Иисус Турă Çуртне пырса çынсене вĕрентнĕ чух
Ун патне аслă священниксемпе халăх хушшинчи
ятлă-сумлă çынсем пынă. «Эсĕ çакна мĕнле тивĕçпе
тăватăн? Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?» – тесе
ыйтнă вĕсем. 24 Иисус вĕсене çапла хуравланă:

«Манăн та сирĕнтен пĕр сăмах ыйтмалли пур: эсир
Мана каласан, Эпĕ те çакна мĕнле тивĕçпе тунине
каласа парăп. 25 Иоанн шыва кĕртни ăçтан пулнă:
çӳлтен-и е этемрен?» Лешсем вара пĕр-пĕринпе
канашлама пуçланă: «„Çӳлтен“, – тесен, Вăл пире:
„Апла эсир Иоана мĕншĕн ĕненмерĕр?“ – тейĕ.
26 „Этемрен“, – теес, халăхран хăратпăр, мĕншĕн
тесен пурте Иоана пророк тесе шутлаççĕ“».
27 «Пĕлместпĕр», – тенĕ вара вĕсем Иисуса. «Эппин
Эпĕ те сире çакна мĕнле тивĕçпе тунине
каламастăп», – тавăрнă Иисус вĕсене.

### Икĕ ывăл çинчен каланă ытарлăх

28 «Эсир тата çак ĕç-пуç пирки мĕн каланă
пулăттăр? Пĕр çыннăн икĕ ывăл пулнă. Вăл пĕрин
патне пынă та çапла каланă: „Ачам, паян ичĕм
çырли пахчине кайса ĕçле-ха“. 29 „Каяс килмест“, –
тенĕ ывăлĕ. Анчах та тепĕртакран, ӳкĕнсе, ĕçлеме
кайнă. 30 Ашшĕ тепĕр ывăлĕ патне пынă та çав ĕçех
тума хушнă. „Юрĕ, аттем“, – тенĕ ывăлĕ, анчах хăй
кайман. 31 Икĕ ывăлĕнчен хăшĕ ашшĕ ирĕкне
пурнăçланă?» «Пĕрремĕшĕ», – тенĕ Ăна. «Чăн
калатăп сире, – тенĕ Иисус вĕсене, – налук
пухакансемпе аскăн хĕрарăмсем Турă Патшалăхне
сирĕнтен маларах кĕрĕç. 32 Мĕншĕн тесен сирĕн
патăра тӳрĕлĕх çулĕпе Шыва кĕртекен Иоанн килчĕ
те, эсир ăна ĕненмерĕр. Налук пухакансемпе аскăн
хĕрарăмсем вара ăна ĕненчĕç. Çавна курнă хыççăн
та эсир ĕненесчĕ тесе ӳкĕнмерĕр».

### *Усал пахчаçăсем çинчен каланă ытарлăх*

(Мк. 12:1-12; Лк. 20:9-19)

33 «Тата тепĕр ытарлăх итлесемĕр. Пĕр кил хуçи
пулнă. Вăл ичĕм çырли лартса пахча тунă, йĕри-
тавра карта тытса çавăрнă. Унтан вăл сĕткен пусса
кăлармалли юхтаркăч чавнă тата хурал пӳрчĕ
лартнă. Вара пахчине тара тытнă пахчаçăсене
парса хăварнă та хăй урăх çĕре кайнă. 34 Çырла
татма вăхăт çитсессĕн хайхи хуçа хăйĕн тарçисене
пахчаçăсем патне хăйĕн çырлине илме янă.
35 Анчах та лешсем унăн тарçисене ярса тытнă та
хăшне хĕнесе тăкнă, хăшне çапса пăрахнă, хăшне
тата чулпа пере-пере вĕлернĕ. 36 Хуçа вара урăх
тарçисене янă. Вĕсем малтанхисенчен те
йышлăрах пулнă, анчах та пахчаçăсем кусемпе те
çаплах хăтланнă. 37 Юлашкинчен хуçи вĕсем патне
ывăлне янă. „Ывăлăмран вăтанĕçех“, – тесе
шухăшланă вăл. 38 Пахчаçăсем вара хуçа ывăлне
курсанах пĕр-пĕрне çапла каланă: „Ашшĕн пурлăхĕ
çакна юлмалла, атьăр ăна вĕлерер те вăл илес
еткере хамăр илер“. 39 Вара ăна тытнă та пахчаран
илсе тухса вĕлернĕ. 40 Ĕнтĕ пахча хуçи килсен çав
пахчаçăсене мĕн тăвĕ?» 41 «Çав усал тăвакансене
усал вилĕмпе вĕлерттерĕ те пахчине урăххисене,
çимĕçе вăхăтра парса тăракан пахчаçăсене, тара
парĕ», – тенĕ Ăна. 42 Иисус вĕсене çапла каланă:
«„Çурт тăвакансем пăрахăçланă чул никĕсри тĕп
чул пулса тăчĕ; çакна Хуçамăр турĕ, çакна эпир
пăхса ытараймастпăр“, – тенĕ Çырнинче. Эсир
çавна нихăçан та вуламан-и? 43 Çавăнпа калатăп
сире: Турă Патшалăхне сирĕнтен туртса илĕç те ăна
тивĕçлĕ çимĕç кӳрекен халăха парĕç. 44 Çав чул çине
ӳкекен арканĕ. Чулĕ хăй кам çине ӳкĕ, ăна лапчăтса
пăрахĕ ». 45 Унăн ытарлăхĕсене илтсессĕн аслă
священниксемпе фарисейсем Иисус хăйсем çинчен
каланине ăнланса илнĕ. 46 Вара вĕсем Ăна ярса
тытасшăн пулнă, анчах халăхран хăранă, мĕншĕн
тесен çынсем Ăна Пророк тесе шутланă.

### *Туй ĕçки-çики çинчен каланă ытарлăх*

(Лк. 14:15-24)

22 Иисус вĕсене татах ытарлăн каласа вĕрентме
пуçланă: 2 «Çӳлти Патшалăх хăйĕн ывăлне туй
ĕçки-çики туса паракан патша евĕрлĕ. 3 Вăл хăйĕн
чурисене туя чĕнсе хунисене йыхрав тума янă,
анчах лешсем пырасшăн пулман. 4 Вара патша урăх
чурисене çапла каласа янă: „Чĕнсе хунисене калăр:
ĕçкĕм-çикĕм хатĕр ĕнтĕ, вăкăрсемпе самăртнă
выльăхсене те пустартăм, йăлтах хатĕр, туя килме
кăмăл тусамăр“. 5 Чĕнсе хунисем вара,
йыхравланине хисепе хумасăр, хăшĕ – хăйĕн
хирне, хăшĕ суту-илӳ тума кайнă. 6 Теприсем тата
хайхи чурасене ярса тытнă та мăшкăл туса
вĕлернĕ. 7 Çакăн çинчен илтсен патша питĕ
çилленсе кайнă. Вара хăйĕн çарне ярса çав çын
вĕлеренсене хăйсене те вĕлерттернĕ, хулине
çунтарса яма хушнă. 8 Унтан вăл чурисене çапла
каланă: „Ĕçкĕ-çикĕм хатĕр ĕнтĕ, анчах чĕнсе
хунисем тивĕçлĕ пулмарĕç. 9 Ĕнтĕ çул юпписене
тухăр та кама тĕл пулатăр, пурне те туя чĕнĕр“.
10 Вара чурисем çул-йĕрсем çине тухнă та тĕл
пулнисене пурне те – усаллисене те, ыррисене те –
чĕнсе пынă. Ĕçкĕ-çикĕре хăна-вĕрле туллиех пулнă.
11 Патша, хăнисене курма кĕрсен, унта туй тумтирĕ
тăхăнман пĕр çынна асăрханă. 12 „Тусăм, епле эсĕ
туй тумтирĕсĕрех кунта килтĕн?“ – тенĕ ăна патша.
Лешĕ чĕнмен. 13 Вара патша тарçисене çапла
каланă: „Çакăн алли-урине çыхăр та ăна тула,
тĕттĕмлĕхе кăларса пăрахăр. Унта шăл
шатăртаттарса йĕни илтĕнсе тăрĕ. 14 Мĕншĕн тесен
чĕнсе хунисем нумай та, суйласа илнисем сахал“».

### *Рим патшине тӳлемелли налук*

(Мк. 12:13-17; Лк. 20:20-26)

15 Çакăн хыççăн фарисейсем кайнă та Вăл
каланинче епле те пулин айăпламалли сăлтав
тупасчĕ тесе канаш тунă. 16 Хайхисем Ун патне
хăйсен вĕренекенĕсемпе Ирод майлисене янă.
«Вĕрентекен, – тенĕ вĕсем Иисуса, – Эсĕ тӳрĕлĕхлĕ
пулнине, чăнах та Турă çулĕ çинчен вĕрентнине
эпир пĕлетпĕр. Эсĕ никама та юрама тăрăшмастăн,
мĕншĕн тесен çынна кам пулнине кура
хакламастăн. 17 Эппин каласам пире: эпир Рим
патшине налук пани тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и? Эсĕ
мĕнле шухăшлатăн?» 18 Анчах та Иисус, вĕсен
чеелĕхне пĕлсе тăрса, çапла каланă: «Мĕн эсир
Мана илĕртсе тĕрĕслетĕр, икĕ питлĕскерсем?
19 Налук тӳлемелли укçăра Мана кăтартăр-ха».
Лешсем Ун патне пĕр динарийлĕх укçа илсе пынă.

20 Иисус вӗсене каланӑ: «Ҫакӑнта кам сӑнне
ҫаптарнӑ, кам ятне ҫырнӑ?» 21 «Патшанне», – тенӗ
лешсем. Вара Вӑл ҫапла каланӑ: «Эппин патшанне
патшана парӑр, Турӑнне – Турра». 22 Ҫакна илтсен,
тӗлӗннипе шалтах аптӑраса, вӗсем Ун патӗнчен
тухса кайнӑ.

*Вилнисем чӗрӗлсе тӑрасси ҫинчен ыйтни*

(Мк. 12:18-27; Лк. 20:27-40)

23 Ҫав кунах Иисус патне вилнисем чӗрӗлессе
ӗненмен саддукейсем пынӑ. Вӗсем Унран ыйтнӑ:
24 «Вӗрентекен! Моисей ҫапла каланӑ пулнӑ: „Кам та
пулин вилсен, унран ача-пӑча юлмасан, шӑллӗ
унӑн арӑмне качча илтӗр, пиччӗшӗн йӑхне тӑстӑр“.
25 Пирӗн патра ҫичӗ пӗртӑван пурччӗ: асли авланчӗ
те ача-пӑчасӑрах вилчӗ, арӑмӗ вара шӑллӗне юлчӗ.
26 Иккӗмӗшӗ те, виҫҫӗмӗшӗ те, пурте – ҫиччӗмӗшӗ
таранах – ҫапла вилсе пычӗҫ. 27 Пуринчен кайран
арӑмӗ те вилчӗ. 28 Ӗнтӗ вилнисем чӗрӗлсе тӑрас
вӑхӑт ҫитсен вӑл ҫиччӗшӗнчен хӑшӗн арӑмӗ пулӗ
ӗнтӗ? Вӑл пуринпе те пурӑннӑ-ҫке-ха». 29 Иисус
вӗсене хуравланӑ: «Эсир Ҫырнине те, Турӑ хӑватне
те пӗлмен пирки аташатӑр. 30 Чӗрӗлсе тӑнисем
авланмаҫҫӗ те, качча та каймаҫҫӗ, вӗсем тӳпери
Туррӑн ангелӗсем пек пулаҫҫӗ. 31 Вилнисем чӗрӗлсе
тӑрасси пирки вара Турӑ сире каланӑ ҫак сӑмахсене
эсир вуламан-им? 32 „Эпӗ – Авраам Турри те, Исаак
Турри те, Иаков Турри те“, – темен-им Вӑл? Турӑ вӑл
вилнисен Турри мар, чӗррисен Турри». 33 Ҫакна
илтсен халӑх Унӑн вӗрентӗвӗнчен тӗлӗнмеллипех
тӗлӗннӗ.

*Чи аслӑ пил-хушу*

(Мк. 12:28-34; Лк. 10:25-28)

34 Иисус саддукейсен ҫӑварне хуплани ҫинчен
илтсен фарисейсем пӗр ҫӗре пухӑннӑ. 35 Вӗсенчен
пӗри, саккун вӗрентӳҫи, Ӑна илӗртсе тӗрӗслес тесе
ҫапла ыйтнӑ: 36 «Вӗрентекен, саккунри чи аслӑ пил-
хушу хӑшӗ?» 37 Иисус вара ӑна каланӑ: «„Хуҫа
Турруна пӗтӗм чӗререн, пӗтӗм чунран, пӗтӗм ӑс-
халтан юрат“. 38 Ҫакӑ – чи малтанхи тата чи аслӑ
пил-хушу. 39 Иккӗмӗшӗ те ҫавнашкалах аслӑ: „Ҫывӑх
ҫынннуна хӑвна юратнӑ пек юрат“. 40 Моисей
саккунӗпе пророксен сӑмахӗ пӗтӗмпех ҫак икӗ пил-
хушу ҫинче никӗсленсе тӑрать».

*Турӑ Суйласа илни кам йӑхӗнчен пулмалла?*

(Мк. 12:35-37; Лк. 20:41-44)

41 Фарисейсем пухӑнса ҫитсен Иисус вӗсенчен
ҫапла ыйтнӑ: 42 «Турӑ Суйласа илни ҫинчен эсир
мӗн шухӑшлатӑр? Кам йӑхӗнчен пулмалла Вӑл?»
«Давид йӑхӗнчен», – тенӗ Ӑна. 43 Иисус вӗсене
каланӑ: «Епле-ха эппин Давид, Турӑ Сывлӑшӗн
витӗмӗпе, Ӑна Хуҫам тет? Давид ҫапла каланӑ вӗт-
ха: 44 „Хуҫамӑр манӑн Хуҫама каланӑ: Эпӗ Санӑн
тӑшманусене уру айне тӑвиччен Эсӗ Манӑн сылтӑм
енче, хисеплӗ вырӑнта лар“. 45 Ҫапла вара, Давид
Ӑна Хуҫам тет пулсан, епле-ха Вӑл унӑн йӑхӗнчен
пулма пултарать?» 46 Иисуса хирӗҫ никам та пӗр
сӑмах та калайман. Ҫав кунран пуҫласа вара Иисуса
ыйтусем пама никам та хӑяйман.

*Фарисейсемпе саккун вӗрентӳҫисенчен*
*асӑрхаттарни*

(Мк. 12:38-40; Лк. 11:37-52; 20:45-47)

23 Ҫавӑн хыҫҫӑн Иисус пухӑннӑ халӑха тата
вӗренекенӗсене ҫапла каланӑ: 2 «Саккун
вӗрентӳҫисемпе фарисейсем Моисей ларнӑ вырӑна
йышӑннӑ. 3 Ҫавӑнпа вӗсем сире мӗн каланине
итлӗр, хушнине пурнӑҫласа тӑрӑр. Анчах та вӗсем
пек ан хӑтланӑр: вӗсем хӑйсем каланине хӑйсем те
тумаҫҫӗ. 4 Вӗсем ҫынсен ӗнси ҫине чӑтма ҫук йывӑр
ҫӗклем хураҫҫӗ, анчах та хӑйсем пӳрнине те
хускатасшӑн мар. 5 Тӑвакан мӗн пур ӗҫӗсене те
вӗсем ҫынсене кӑтартма ҫеҫ тӑваҫҫӗ: сыхлӑх
хӑюсене сарлакалатсах пыраҫҫӗ, аркӑ вӗҫӗнчи
ҫӳҫисене те вӑрӑмлатсах пыраҫҫӗ. 6 Вӗсем ӗҫкӗ-
ҫикӗре кӗрекере ларма, синагогӑра малта ларма
юратаҫҫӗ, 7 халӑх йышлӑ ҫӗрте хӑйсене
саламланине тата ҫынсем хӑйсене: „Вӗрентекен!
Вӗрентекен!“ – тесе чӗннине килӗштереҫҫӗ. 8 Эсир
вара хӑвӑра „вӗрентекен“ тесе ан калаттарӑр,
мӗншӗн тесен сирӗн Вӗрентекенӗр пӗрре –
Христос, хӑвӑр хушшӑрта вара эсир пурте
тӑвансем. 9 Ҫӗр ҫинче никама та хисеплесе „атте“
тесе ан калӑр, мӗншӗн тесен унашкал хисеплӗ ята
тивӗҫли – пӗртен-пӗр Ҫӳлти Ашӑр. 10 Хӑвӑра „ӑс
паракан“ тесе те ан калӑр, мӗншӗн тесен сирӗн
пӗртен-пӗр Ӑс Паракан – Христос. 11 Хӑвӑр
хушшӑрта асли сирӗншӗн тарҫӑ пултӑр. 12 Мӗншӗн
тесен кам хӑйне асла хурать, ҫав кӗҫӗне юлӗ; хӑйне
кӗҫӗне хуракан асла тухӗ.

13 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ
питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир ҫынсене Ҫӳлти
Патшалӑха кӗме пӳлсе тӑратӑр; хӑвӑр та кӗместӗр,
кӗрес текенсене те кӗме памастӑр.

14 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ
питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир тӑлӑх
арӑмсене кил-ҫуртсӑр хӑваратӑр тата ҫын умӗнче
юриех чылайччен кӗлтӑватӑр. Ҫавӑншӑн сире тата
йывӑртарах айӑплав пулӗ .

15 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ
питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир пӗр ҫынна та
пулин хӑвӑр енне ҫавӑрасшӑн шывпа-ҫӗрпе нумай
ҫул ҫӳретӗр. Ҫавӑрсан вара эсир ҫав ҫынна
хӑвӑртан икӗ хут ытларах усала кӑларатӑр, унран
тамӑк ачи туса хуратӑр.

16 Хуйхӑ пулӗ сире, суккӑр ертӳҫӗсем! „Турӑ
Ҫурчӗпе тупа тӑвакана нимӗн те пулмасть, Турӑ
Ҫурчӗн ылтӑнӗпе тупа тӑвакан – айӑплӑ“, – тетӗр
эсир. 17 Эй, ӑссӑрсем, суккӑрсем! Мӗн пахарах:
ылтӑн-и е ылтӑна сӑваплӑ тӑвакан Турӑ Ҫурчӗ-и?
18 Тата ҫапла калатӑр: „Парне вырӑнӗпе тупа
тӑвакана нимӗн те пулмасть, унта кӳнӗ парнепе
тупа тӑвакан – айӑплӑ“. 19 Эй, ӑссӑрсем, суккӑрсем!
Мӗн пахарах: парне-и е ӑна сӑваплӑ тӑвакан парне
вырӑнӗ-и? 20 Ҫапла вара парне вырӑнӗпе тупа
тӑвакан унпа та, ун ҫинчи парнесемпе те тупа
тӑвать. 21 Турӑ Ҫурчӗпе тупа тӑвакан унпа та, унта
Пурӑнаканпа та тупа тӑвать. 22 Пӗлӗтпе тупа

тӑвакан Туррӑн Престолӗпе те, ун ҫинче Лараканпа та тупа тӑвать.

23 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир пӗтнӗк курӑкӗн, энӗс курӑкӗн, калемпӗр курӑкӗн вуннӑмӗш пайне Турӑшӑн паратӑр, анчах саккунри чи кирлине – тӗрӗслӗхлӗ, хӗрхенӳллӗ, ӗненӳллӗ пулассине – сиктерсе хӑваратӑр. Сирӗн ҫакна та туса тӑмалла, лешне те манмалла мар. 24 Эй, суккӑр ертӳҫӗсем! Вӑрӑм туна кӗрсе каясран эсир сӗрсе ӗҫетӗр, тӗвене вара ҫӑтса яратӑр.

25 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир чашӑк-тирӗк тулашне тасататӑр, вӗсен ӑшӗ вара ҫӑткӑнлӑхпа, тӗрӗсмарлӑхпа тулнӑ. 26 Эй, суккӑр фарисей! Чашӑк-тирӗк тулашӗ таса пултӑр тесен малтан ӑшне тасат.

27 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир сӑрланӑ тупӑклӑхсем евӗрлӗ: тулашӗнчен вӗсем хитрен курӑнаҫҫӗ, ӑшӗнче вара вилнисен шӑмми-шакки, тӗрлӗ тасамарлӑх тулса ларнӑ. 28 Эсир те ҫавнашкалах: пӑхма тӳрӗ ҫын пек курӑнатӑр, ӑшӑр вара ултавлӑхпа, йӗркесӗрлӗхпе тулса ларнӑ.

29 Саккун вӗрентӳҫисемпе фарисейсем, икӗ питлӗскерсем, хуйхӑ пулӗ сире! Эсир ӗлӗкхи пророксем валли тупӑклӑхсем тӑватӑр, тӳрӗ пурӑннисен палӑкӗсене илемлететӗр. 30 „Эпир мӑн асаттесен саманинче пурӑннӑ пулсан вӗсем пророксен юнне юхтарнӑ ҫӗре хутшӑнман пулӑттӑмӑр“, – тетӗр эсир. 31 Ҫапла майпа эсир хӑвӑр ҫинчен хӑвӑрах пророксене вӗлерекенсен ачисем, вӗсен ӗҫне тӑсакансем пулнине ҫирӗплетсе пӗлтеретӗр. 32 Аслаҫӑрсем туса пӗтерейменнине эсир туса пӗтерӗр ӗнтӗ. 33 Эй, ҫӗленсем, ҫӗлен ҫурисем! Хӑвӑра тамӑк вутне кӗме суд тӑвасран хӑтӑлса юлма пулать тетӗр-и? 34 Ӗнтӗ Эпӗ сирӗн патӑра пророксене, ӑсчахсене, вӗрентекенсене яратӑп. Эсир вӗсенчен хӑшне-пӗрне вӗлерӗр, пӑталӑр; хӑшне-пӗрне хӑвӑр синагогӑсенче чӗн пушӑпа ҫаптарӑр, хуларан хулана тарса ҫӳремеллех хӗсӗрлӗр. 35 Ҫапла майпа тӳрӗ пурӑннӑ Авель юнӗнчен пуҫласа Турӑ Ҫурчӗн картишӗнче, парне вырӑнӗ умӗнче, хӑвӑр вӗлернӗ Варахия ывӑлӗ Захария юнӗ таранах, ҫӗр ҫинче сӑвапла ҫынсем тӑкнӑ мӗн пур юншӑн сире явап тытма лекӗ. 36 Чӑн калатӑп сире: ҫавсемшӗн пуриншӗн те ҫак ӑрӑва айӑплав пулӗ».

*Иисус Иерусалимшӑн кулянни*

(Лк 13:34-35)

37 «Эй, Иерусалим, Иерусалим! Пророксене пӗтерекен, ху патна янисене чулпа пере-пере вӗлерекен хула! Чӗп амӑшӗ хӑй чӗпписене ҫуначӗ айне пухнӑ пек, Эпӗ миҫе хутчен санӑн ачусене пуҫтарма тытӑнтӑм, анчах та эсир пуҫтарӑнасшӑн пулмарӑр! 38 Ӗнтӗ ҫуртӑр пушанса юлать. 39 Калатӑп сире: „Хуҫа Турӑ ячӗпе Килекен мухтавлӑ!“ – тесе кӑшкӑрас вӑхӑтчен Мана урӑх кураймӑр».

*Турӑ Ҫуртне аркатасси тата тӗнче пӗтесси ҫинчен*

(Мк. 13:1-13; Лк. 21:5-19)

24 Иисус Турӑ Ҫуртӗнчен тухнӑ та ҫулпа утса пынӑ. Ҫавӑн чухне, Ӑна Турӑ Ҫурчӗпе хуралтисене кӑтартас тесе, Ун патне вӗренекенӗсем пынӑ. 2 «Ҫак ҫуртсене куратӑр-и? – тенӗ вӗсене Иисус. – Чӑн калатӑп сире: ҫакӑнта чул ҫинче чул та юлмӗ, йӑлтах аркатӗҫ».

3 Елеон тӑвӗ ҫинче ларнӑ чухне Ун патне вӗренекенӗсем пӗр хӑйсем кӑна пынӑ та ҫапла ыйтнӑ: «Каласамччӗ пире: вӑл хӑҫан пулӗ? Эсӗ тепӗр хут килессе тата ҫак тӗнче пӗтес вӑхӑта мӗнле паллӑ тӑрӑх пӗлмелле?» 4 Иисус вӗсене ҫапла тавӑрнӑ: «Хӑвӑра кам та пулин илӗртсе улталасран асӑрханӑр. 5 Мӗншӗн тесен Ман ятӑмпа килекенсем нумай пулӗҫ, „эпӗ – Христос“ тесе вӗсем чылайӑшне улталӗҫ. 6 Тата сирӗн вӑрҫӑсем ҫинчен илтмелле, вӑрҫӑ хыпарӗсем илмелле пулӗ. Астӑвӑр, хӑраса ан ӳкӗр, мӗншӗн тесен ҫавсен пурин те пулмалла, анчах ку пӗтес вӑхӑт мар-ха. 7 Халӑх ҫине халӑх тапӑнӗ, патшалӑх ҫине патшалӑх вӑрҫӑпа тухӗ; вырӑнӑн-вырӑнӑн выҫлӑх ҫулсем, вӗлерекен чир-чӗрсем, ҫӗр чӗтреннисем пулӗҫ. 8 Ҫапах та ҫаксем пурте – хӗн-хур пуҫламӑшӗ кӑна-ха. 9 Ун чухне сире асаплантарма тытса парӗҫ, сире вӗлерӗҫ, Ман ятӑмшӑн сире пӗтӗм тӗнче курайми пулӗ. 10 Ҫавӑн чухне чылайӑшӗ Мана ӗненме пӑрахӗҫ, пӗр-пӗрне сутӗҫ, пӗр-пӗрне курайми пулӗҫ. 11 Суя пророксем нумай килӗҫ, чылайӑшне илӗртсе улталӗҫ. 12 Йӗркесӗрлӗх вӑйланса пынӑҫемӗн ҫынсем пӗр-пӗринчен сивӗнӗҫ. 13 Кам вӗҫне ҫитиччченех тӳсӗ, ҫав ҫӑлӑнӗ. 14 Вара мӗн пур халӑхсене пӗлтермешкӗн пӗтӗм тӗнчипех Турӑ Патшалӑхӗ ҫинчен ҫак Ырӑ Хыпара сарӗҫ. Пӗтес вӑхӑт ҫавӑн чухне ҫитӗ».

*Хӑрушӑ асап-хуйхӑ ҫитесси ҫинчен*

(Мк. 13:14-23; Лк. 21:20-24)

15 «Ҫапла вара, Турӑ Даниил пророк урлӑ калани ҫитсен, сӑваплӑ вырӑн ирсӗрлӗхпе юхӑнса тӑнине курсан, – вулакан ҫакна ӑнлантӑр, – 16 вара Иудея халӑхӗ тусем ҫине тартӑр. 17 Кил хушшинчи ҫын япала тавраш илес тесе пӳрте кӗрсе-туса ан тӑтӑр. 18 Хирти ҫын та тумтир тавраш илес тесе каялла ан тавӑрӑнтӑр. 19 Ҫав кунсенче йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене, кӑкӑр ҫитерекен амӑшӗсене пысӑк хуйхӑ пулӗ. 20 Хӑвӑр тарас вӑхӑт хӗллене е шӑмат куна ан килтӗрччӗ тесе кӗлтӑвӑр. 21 Мӗншӗн тесен ун чухне хӑрушӑ асап-хуйхӑ пулӗ. Унашкалли халиччен тӗнче пуҫланнӑранпа та пулман, пулас та ҫук. 22 Турӑ асап кунӗсен шутне чакарман пулсан, никам та ҫӑлӑнса юлаяс ҫукчӗ. Анчах та Хӑй суйласа илнисене хӗрхенсе Турӑ ҫав кунсен шутне чакарӗ. 23 Ҫавӑн чухне кам та пулин сире: „Христос акӑ кунта“ е „Авӑ унта“, – тесен ан ӗненӗр. 24 Мӗншӗн тесен суя христоссемпе суя пророксем тупӑнӗҫ. Вӗсем тӗлӗнмелле паллӑсемпе хӑватсем кӑтартса, май килсен, суйласа илнисене те илӗртсе улталама пӑхӗҫ. 25 Ҫаксем пирки Эпӗ сире малтанах каласа

хурас терĕм. 26 Çапла вара: „Авă, Христос пуш
хирте“, – тенине илтсен курма ан тухăр, „Авă,
Христос шалти пӳлĕмсенче“, – тенине илтсен те ан
ĕненĕр. 27 Мĕншĕн тесен Этем Ывăлĕ хĕвел
тухăçĕнчен пуçласа хĕвел анăçне çитиччен
ялтăраса тăракан çиçĕм пек курăнса килĕ. 28 Виле
выртакан вырăна ăмăрт кайăксем пуçтарăнĕç».

*Этем Ывăлĕ килесси çинчен*
(Мк. 13:24-27; Лк. 21:25-28)

29 «Çав асап кунĕсем хыççăнах хĕвел тĕттĕмленĕ,
уйăх çути сӳнĕ. Тӳпери çăлтăрсем ӳкĕç, çӳлти вăй-
хăватсем хускалĕç. 30 Çавăн хыççăн пĕлĕт çинче
Этем Ывăлĕн палли курăнĕ, вара çĕр çинчи мĕн пур
халăхсем кăшкăрса йĕрсе ярĕç. Вĕсем тӳпери
пĕлĕтсем çинче хăватлă та аслă мухтавпа килекен
Этем Ывăлне курĕç. 31 Вара, вăйлă труба сасси
янăраса кайсан, Вăл Хăйĕн ангелĕсене ярĕ, вĕсем
тĕнчен тăватă енчен те, пĕлĕтĕн пĕр хĕрринчен
пуçласа тепĕр хĕррине çитиччен Унăн суйласа
илнĕ çыннисене пухĕç».

*Смоква йывăççипе танлаштарни*
(Мк. 13:28-31; Лк. 21:29-33)

32 «Илер-ха, тĕслĕхрен, смоква йывăççине. Унăн
турачĕсем папка кăларса ешере пуçласан, эсир çу
çывхарнине пĕлетĕр. 33 Çавнашкалах эсир те, Эпĕ
калани пурнăçланса пынине курсан, çак тĕнче
пĕтес вăхăт çывхарнине, алăк умнех çитнине пĕлсе
тăрăр. 34 Чăн калатăп сире: çавсем пурте çак ăру
пĕтиччченех пулса иртĕç. 35 Çĕрпе пĕлĕт те пĕтĕ,
Ман сăмахăмсенчен пĕри те пĕтмĕ.
36 Çавă хăш кун, хăш сехетре пуласса Атте Турăсăр
пуçне никам та пĕлмест, тӳпери ангелсем те
пĕлмеççĕ. 37 Ной вăхăтĕнче епле пулнă, Этем Ывăлĕ
килнĕ чух та çаплах пулĕ. 38 Çĕре шыв иличченхи
кунсенче, Ной карап çине ларичченех, çынсем ĕççе
çинĕ, авланнă, качча кайнă. 39 Çĕр питне шыв илсе
пурне те пĕтеричченех ун çинчен никам та
шухăшламан. Этем Ывăлĕ килесси те çаплах пулĕ.
40 Ун чухне хирте ĕçлекен икĕ çынран пĕрне илĕç,
теприне хăварĕç. 41 Ал арманĕпе авăртакан икĕ
хĕрарăмран пĕрне илĕç, теприне хăварĕç».

### Хатĕр тăма чĕнни

42 «Çапла вара, сыхă пулăр, мĕншĕн тесен Хуçăр
хăш самантра килессине пĕлместĕр. 43 Анчах та
эсир çакна пĕлетĕр: вăрă хăçан килессе кил хуçи
пĕлес пулсассăн çав вăхăтра вăл сыхă тăрĕччĕ, хăй
çуртне çĕмĕрсе кĕме памĕччĕ. 44 Çавăнпа эсир те
хатĕр тăрăр, мĕншĕн тесен Этем Ывăлĕ эсир
кĕтмен-туман вăхăтра килĕ».

*Шанчăклă тата шанчăксăр чурасем çинчен*
(Лк. 12:41-48)

45 «Кам шанчăклă та ăслă чура? Калăпăр, хуçи
хăйĕн ытти тарçисене пăхса тăма, вăхăтра апат
çитерме пĕр чурине уйăрса лартнă. 46 Хуçи
таврăннă чухне хушнине туса тăракан чура
телейлĕ пулĕ. 47 Чăн калатăп сире: хуçи ăна хăйĕн
пĕтĕм пурлăхне пăхса тăраканĕ тăвĕ. 48 Енчен те çав
чура усал пулсан, хăй ăшĕнче: „Хуçам халех килмĕ-
ха“, – тесе, 49 хăйĕн юлташĕсенех хĕнеме пуçлĕ,
ĕçкĕçсемпе ерсе кайса ĕçсе çийĕ. 50 Хайхи чура хуçи
кĕтмен-туман вăхăтра таврăнĕ те, 51 ăна
асаплантарса вĕлерсе, унăн шăпине икĕ
питлисемпе пĕрешкелех татса парĕ; унта шăл
шатăртаттарса йĕни илтĕнсе тăрĕ».

### Вунă хĕр çинчен каланă ытарлăх

25 «Ун чухне Çӳлти Патшалăх çутаткăçсем илсе
кĕрӳ каччăна хирĕç тухнă вунă хĕр евĕрлĕ
пулĕ. 2 Вĕсенчен пиллĕкĕшĕ ăслă пулнă, пиллĕкĕшĕ
– айван. 3 Айваннисем çутаткăçĕсене илнĕ, анчах
çунтармалли çуне илмен. 4 Ăслисем вара
çутаткăçĕсене те, çунтармалли çу кăкшăмĕсене те
илнĕ. 5 Кĕрӳ каччă час пырайманран хĕрсем
ыйхăласа çывăрсах кайнă. 6 Çĕр варринче
кăшкăрни илтĕнсе кайнă: „Кĕрӳ килет, хирĕç тухăр!“
7 Вара çав хĕрсем пурте вăраннă та тăрса
çутаткăçĕсене йĕркене кĕртнĕ. 8 „Пирĕн
çутаткăçсем сӳнме пуçларĕç, пире çу парăр-ха“, –
тенĕ айваннисем ăслисене. 9 Анчах та ăслисем
çапла тавăрса каланă: „Парсассăн çăвĕ сире те,
хамăра та çитеймĕ. Çу сутакан патне кайăр та хăвăр
валли туянăр“. 10 Вĕсем çу туянма кайсан кĕрӳ каччă
пырса çитнĕ. Вара хатĕр тăракан пилĕк хĕр унпа
пĕрле туй пулас пӳрте кĕнĕ, унтан тарçăсем алăка
хупса хунă. 11 Тепĕртакран çу патне кайнă хĕрсем
таврăннă та: „Хуçамăр! Хуçамăр! Уçса кĕртсемччĕ
пире!“ – тенĕ. 12 Анчах та каччă вĕсене çапла
хуравланă: „Чăн калатăп сире: эпĕ сире пĕлместĕп“.
13 Çапла вара, – тенĕ ытарлăха вĕçлесе Иисус, –
сыхă пулăр, мĕншĕн тесен Этем Ывăлĕ хăш кун,
хăш сехетре килессе пĕлместĕр».

*Талант çинчен каланă ытарлăх*
(Лк. 19:11-27)

14 «Ун чухне ак çак ытарлăхра каланă пек пулса
иртĕ. Пĕр çын ют çĕр-шыва тухса каяс умĕн
чурисене чĕнсе илнĕ те вĕсене хăйĕн пурлăхне
пăхса тăма шанса хăварнă. 15 Кашнин пултарулăхне
кура хайхи хуçа пĕр тарçине пилĕк талант кĕмĕл
укçа, теприне икĕ талант, тата теприне пĕр талант
уйăрса панă, хăй часах çула тухса кайнă. 16 Пилĕк
талант илни укçине ĕçе хывнă та татах пилĕк
талант тупăш тунă. 17 Çавнашкалах, икĕ талант
илни те тата икĕ талант тунă. 18 Пĕр талант илни
вара кайнă та хуçи панă кĕмĕл укçана çĕре чавса
пытарнă. 19 Чылай вăхăт иртсен хуçи таврăннă та
чурасем укçапа мĕн тунине тĕрĕсле пуçланă.
20 Пилĕк талант илни тата тепĕр пилĕк талант илсе
пынă та çапла каланă: „Хуçам, эсĕ мана пилĕк
талант парса хăварнăччĕ, акă эпĕ вăл укçапа тата
пилĕк талант тупăш турăм“. 21 „Аван, ырă та
шанчăклă чурам, – тенĕ ăна хуçи. – Пĕчĕк тивĕçе
тӳрре кăларнăшăн эпĕ сана пысăк тивĕç шанса
паратăп. Халĕ хуçупа пĕрле савăн ĕнтĕ“. 22 Икĕ
талант илни те пырса çапла каланă: „Хуçам, эсĕ
мана икĕ талант парса хăварнăччĕ, акă эпĕ вăл

укçапа тата икĕ талант тупăш турăм“. 23 „Аван, ырă
та шанчăклă чурам, – тенĕ ăна та хуçи. – Пĕчĕк
тивĕçе тӳрре кăларнăшăн эпĕ сана пысăк тивĕç
шанса паратăп. Халĕ хуçупа пĕрле савăнах ĕнтĕ“.
24 Унтан пĕр талант илни çапла пырса каланă:
„Хуçам, эсĕ хытă чунлă çын иккенне эпĕ пĕлеттĕм:
эсĕ акмасăрах вырса илетĕн, сапмасăрах пухса
илетĕн. 25 Çавăнпа та санран хăранипе эсĕ панă
таланта çĕре чавса пытартăм, акă санăн укçу“.
26 „Эх, усал та кахал чура! – тавăрнă ăна хуçи. – Эпĕ
акмасăрах вырнине, сапмасăрх пухса илнине эсĕ
пĕлнĕ. 27 Эппин ман укçама усламçăсене
памаллаччĕ, тавăрăнсан вара эпĕ тупăш илнĕ
пулăттăм. 28 Ĕнтĕ унран пĕр талантлăх укçине илĕр
те вунă талантлă чурама парăр. 29 Мĕншĕн тесен
камăн пур, ăна татах парĕç, унăн хушăнсах пырĕ.
Камăн çук, мĕн пуррине те туртса илĕç. 30 Юрăхсăр
чурана тулашри тĕттĕмлĕхе кăларса пăрахăр, унта
шăл шатăртаттарса йĕни илтĕнсе тăрĕ». Çак
сăмахсем хыççăн: «Илтме хăлха пурри илттĕр!» –
тенĕ Иисус хыттăн .

### Пулас Суд

31 «Этем Ывăлĕ Хăйĕн мухтавĕпе, мĕн пур святой
ангелĕсемпе килсессĕн Хăйĕн чаплă престолĕ çине
ларĕ. 32 Ун умне вара пур халăхсем те пухăнĕç. Вăл
вĕсене, кĕтӳçĕ сурăхсене качакасенчен уйăрнă пек,
уйăрĕ. 33 Сурăхĕсене Вăл Хăйĕн сылтăм енне,
качакисене сулахай енне вырнаçтарĕ. 34 Вара
Патша сылтăм енчисене çапла калĕ: „Эй, Аттем
пилленисем, килĕр те тĕнчене пултарсанах сирĕн
валли хатĕрленĕ Патшалăха еткере илĕр.
35 Мĕншĕн тесен Эпĕ выçă чухне эсир Мана
çитертĕр, ăш хыпнă чухне Мана ĕçтертĕр, çул
çӳренĕ чухне Мана хăна пек йышăнтăр. 36 Тумтир
кирлĕ чухне Мана тумлантартăр, чирлĕ чухне Мана
пăхрăр, тĕрмере ларнă чухне те Ман патăма
пырсах тăтăр“. 37 Вара сăваплисем Ăна çапла калĕç:
„Эй, Хуçамăр, çиессӳ килнине курса хăçан эпир
Сана çитертĕмĕр? Е ĕçессӳ килнине курса хăçан
ĕçтертĕмĕр? 38 Эсĕ çул çӳренине курса хăçан хăна
пек йышăнтăмăр? Тумтир çителĕксĕррине курса
хăçан тумлантартăмăр? 39 Эсĕ чирлине, тĕрмерине
курса хăçан Саншăн тăрăшрăмăр?“ 40 „Чăн калатăп
сире, – тейĕ вĕсене Патша, – çаксене эсир Манăн
пĕр-пĕр кĕçĕн тăваншăн тунă, апла ку Маншăн
туниех пулать“. 41 Унтан сулахай енчисене çапла
калĕ: „Эй, ылханлăскерсем! Шуйттанпа ăна
пулăшаканĕсем валли хатĕрлесе хунă сӳнми тамăк
вутне кайăр Ман патăмран! 42 Мĕншĕн тесен
çиессĕм килсен эсир Мана çитермерĕр, ĕçессĕм
килсен Мана ĕçтермерĕр. 43 Çул çӳренĕ чухне Мана
хăна пек йышăнмарăр, тумтир кирлĕ чухне
тумлантармарăр. Эпĕ чирлĕ чухне, тĕрмере чухне
Маншăн тăрăшмарăр“. 44 Вара вĕсем те çапла калĕç:
„Эй, Хуçамăр! Санăн ĕçессӳ, çиессӳ килнине е çул
çӳренине, е тумтирсĕррине, е чирлине, е
тĕрмерине эпир хăçан куртăмăр, хăçан Сана
пулăшмарăмăр?“ 45 „Чăн калатăп сире, – тейĕ вара
Вăл, – эсир Манăн çак кĕçĕн тăванăмсенчен пĕрне
ырă туманни Мана ырă туманнипе пĕрех“. 46 Кусем
вара ĕмĕрлĕх асапа кайĕç, сăваплисем ĕмĕрлĕх
пурăнăçа кĕрĕç».

*Иудейсем Иисуса хирĕç тунă кавар*
(Мк. 14:1-2; Лк. 22:1-2; Ин. 11:45-53)

26 Çак сăмахсене пурне те каласа пĕтерсен
Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене çапла каланă:
2 «Тепĕр икĕ кунран пасха уявĕ çитессе эсир
пĕлетĕр. Çавăн чухне Этем Ывăлне пăталама тытса
парĕç». 3 Çав вăхăтра Каиафа ятлă аслă священник
керменне аслă священниксем, саккун
вĕрентӳçисем тата халăх хушшинчи ятлă-сумлă
çынсем пухăннă. 4 Вĕсем Иисуса чеелĕхпе тытас та
вĕлерес тесе кавар тунă. 5 Анчах та вĕсем çапла
калаçса татăлнă: «Халăх пăлханмалла ан пултăр
тесен ку ĕçе уяв вăхăтĕнче тăвас мар».

*Иисуса Вифанире çупа сĕрни*
(Мк. 14:3-9; Ин. 12:1-8)

6 Пĕррехинче, Иисус Вифанири юхан-суранлă
Симон килĕнче чухне, 7 пĕр хĕрарăм Ун патне
хаклă йышши мирă янă алебастр савăт çĕклесе
пынă. Иисус хăналаннă чухнех çав хĕрарăм Унăн
пуçне çу сĕре пуçланă. 8 Çакна курсан
вĕренекенĕсем тарăхса каланă: «Мĕне кирлĕччĕ
кунашкал тăкакланни? 9 Ку мирăна пысăк хакпа
сутмаллаччĕ те укçине чухăнсене памаллаччĕ».
10 Анчах та Иисус, вĕсем кăмăлсăррине асăрхасан,
çапла каланă: «Мĕншĕн эсир хĕрарăма
пăшăрхантаратăр? Вăл Маншăн ырă ĕç турĕ.
11 Чухăнсем сирĕн яланах пулĕç, Эпĕ сирĕнпе
яланах пулас çук. 12 Çак хаклă çăва Манăн ӳтĕм çине
юхтарса, хĕрарăм Мана çĕре пытарма хатĕрлерĕ.
13 Чăн калатăп сире: çак Ырă Хыпара пĕтĕм
тĕнчипех ӳкĕтлесе вĕрентсен те, пур çĕрте те, çак
хĕрарăм ятне асăнсан, вăл мĕн туни çинчен те
калаçĕç».

*Иуда Искариот сутăнчăклăхĕ*
(Мк. 14:10-11; Лк. 22:3-6)

14 Çавăн чухне Вун иккĕшĕнчен пĕри, Иуда
Искариот ятли, аслă священниксем патне кайнă.
15 «Иисуса сутнăшăн эсир мана мĕн парăр?» – тенĕ
Иуда вĕсене. Лешсем ăна вăтăр кĕмĕл укçа сĕннĕ.
16 Çавăнтан вара вăл Иисуса тытса пама меллĕ
вăхăт шыранă.

*Пасхăна хатĕрленни*
(Мк. 14:12-21; Лк. 22:7-14, 21-23; Ин. 13:21-30)

17 Тутлăлла çăкăр уявĕн малтанхи кунĕнчех
вĕренекенĕсем Иисуса çапла пырса каланă: «Ху
валли пасха апачĕ ăçта хатĕрлеме хушатăн?»
18 Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене хулана пĕр çын
патне кайма, ăна Хăйĕн сăмахĕсене калама хушнă:
«Манăн вăхăтăм çывхарчĕ, сан патăнта Хамăн
вĕренекенĕмсемпе пасха уявне тăвас тетĕп».
19 Вĕренекенĕсем Иисус хушнă пек тунă, пасха
апачĕ хатĕрлесе хунă. 20 Каç пулсан, Вăл вун икĕ
вĕренекенĕпе пĕрле çиме ларнă. 21 «Чăн калатăп
сире, – тенĕ Иисус каçхи апат çинĕ чухне, –

сирĕнтен пĕри Мана тытса парĕ». 22 Вĕренекенĕсем
хуйха ӳкнĕ, вара кашниех Ăна: «Хуçамăр, эпĕ мар
пулĕ те?» – тенĕ. 23 «Манпа пĕр чашăкран çиекенех
Мана сутĕ, – тавăрнă вара Иисус. 24 – Тепĕр тесен,
Этем Ывăлĕ Çырнинче палăртса хунă çулпах
пырать. Анчах Этем Ывăлне тытса паракана хуйхă
пулĕ: ăна çураличчен çуралманни аванрах пулнă
пулĕччĕ». 25 «Равви! Эпĕ мар пулĕ те?» – ыйтнă
çавăн чухне ăна тытса пама килĕшнĕ Иуда. «Эсĕ
хăвах çапла каларăн», – тенĕ ăна Иисус.

*Каçхи вăрттăн апатлану*

(Мк. 14:22-26; Лк. 22:15-20; 1 Кор. 11:23-25)

26 Вĕсем каçхи апат çинĕ чухне Иисус çăкăр илсе
Турра тав тунă та вĕренекенĕсене хуçа-хуçа парса:
«Илĕр, çиййĕр, çакă – Манăн Ӳтĕм», – тенĕ. 27 Унтан
хĕрлĕ эрех курки илнĕ те Турра тав тунă, куркана
вĕсене парса: «Пурте ĕçĕр çакăнтан, 28 çак хĕрлĕ
эрех – Çĕнĕ Халала çирĕплетекен Манăн Юнăм,
нумайăшĕн çылăхне каçармашкăн юхакан Юн.
29 Ĕнтĕ сире калатăп: паянтан Эпĕ иçĕм çырли
эрехне Аттем Патшалăхĕнче сирĕнпе пĕрле çĕнĕ
эрех ĕçес кунччченех урăх ĕçеймĕп». 30 Вара, Турра
мухтаса юрланă хыççăн, Иисуспа вĕренекенĕсем
Елеон тăвĕ çине кайнă.

*Петр тунасса Иисус малтанах калани*

(Мк. 14:27-31; Лк. 22:31-34; Ин. 13:36-38)

31 Çавăн чухне Иисус вĕренекенĕсене калать:
«Кĕçĕр эсир пурте Мана шанма пăрахатăр, мĕншĕн
тесен Çырнинче çапла калнă: „Кĕтӳçне пĕтерĕп те,
кĕтӳри сурăхсем саланса кайĕç“. 32 Чĕрĕлсе тăнă
хыççăн вара Эпĕ Галилейăра сирĕнтен те маларах
пулăп». 33 «Сана пурте шанми пулсан та, эпĕ яланах
шанăп», – тенĕ Ăна Петр. 34 «Чăн калатăп сана, –
тенĕ ăна Иисус, – кĕçĕр автан авăтиччченех эсĕ
Мана виçĕ хутчен пĕлмĕш пулăн». 35 «Санпа пĕрле
вилмелле пулсассăн та эпĕ Санран тунас çук», –
тенĕ Ăна Петр. Ытти вĕренекенĕсем те
çавнашкалах каланă.

*Иисус Гефсиманире*

(Мк. 14:32-42; Лк. 22:39-46)

36 Унтан Иисус вĕренекенĕсемпе Гефсимани текен
вырăна пынă. «Эпĕ çавăнта кайса кĕлтунă вăхăтра
çакăнтах ларăр-ха», – тенĕ вĕренекенĕсене Иисус.
37 Вара Петра тата Зеведейăн икĕ ывăлне Хăйпе
илсе кайнă та пăшăрханса хуйхăрма пуçланă.
38 «Манăн чунăм вилесле хурланать, эсир çакăнта
Манпа пĕрле пулăр-ха, ан çывăрăр», – тенĕ вĕсене
Иисус. 39 Унтан кăшт аяккарах кайнă та çĕре ӳксе
çапла кĕлтунă: «Эй, Аттем! Май пулсассăн çак асап
куркине Манран ирттерсемччĕ. Çапах та Эпĕ тăвас
тенĕ пек мар, Эсĕ тăвас тенĕ пек пултăр». 40 Çавăн
хыççăн Вăл вĕренекенĕсем патне пынă та лешсем
çывăрнине курнă. «Манпа пĕрле эсир пĕр сехет те
пулин çывăрмасăр тӳсеймерĕр-и? – тенĕ вăл Петра.
41 – Илĕртнипе çылăха кĕрес марччĕ тесе сыхă
пулăр, кĕлтăвăр: этемĕн чун-чĕмĕ çирĕп, ӳт-пĕвĕ
вара хавшак». 42 Унтан Вăл каллех тепĕр хут
аяккарах пăрăннă та çапла каласа кĕлтунă: «Эй,
Аттем! Çак асап куркине Манран ирттерме май
çуках пулсан, Манăн ăна ĕçмеллех пулсан, эппин
Санăн ирĕкӳ пултăр». 43 Вĕренекенĕсем патне
таврăнсан Вăл каллех вĕсем çывăрнă тĕле пулнă.
Вĕсене ыйхă пуссах çитернĕ. 44 Унтан Иисус, вĕсене
хăварса, каллех аяккарах пăрăннă та малтанхи
пекех каласа виççĕмĕш хут кĕлтунă. 45 Кĕлтунă
хыççăн вĕренекенĕсем патне таврăннă та вĕсене
çапла каланă: «Эсир çаплах çывăратăр-и, канатăр-
и? Ĕнтĕ Этем Ывăлне çылăхлă çынсен аллине тытса
парас вăхăт çитрĕ. 46 Тăрăр та каяр! Акă ĕнтĕ Мана
сутакан та çывăхрах».

*Иисуса тытни*

(Мк. 14:43-50; Лк. 22:47-53; Ин. 18:3-12)

47 Вăл çапла каласа тăнă вăхăтрах Вун
иккĕшĕнчен пĕри, Иуда, тата унпа пĕрле хĕçсемпе
шалçасем йăтнă темĕн чухлĕ халăх пырса çитнĕ.
Вĕсене аслă священниксемпе халăх хушшинчи
ятлă-сумлă çынсем янă пулнă. 48 Сутаканĕ
ушкăнрисене çапла паллă пама калаçса татăлнă:
«Эпĕ Кама чуптăвăп, Çавă Иисус пулĕ, эсир вара
Ăна ярса тытăр». 49 Вăл çавăнтах Иисус патне пынă
та: «Сывлăх сунатăп, Равви!» – тесе Ăна чуптунă.
50 Иисус вара ăна çапла каланă: «Тусăм, мĕн тума
килнине ту!» Çав вăхăтра ыттисем Иисуса çавăрса
илнĕ те Ăна ярса тытнă. 51 Иисуспа юнашар
тăракансенчен пĕри хĕçне туртса кăларнă та аслă
священник чури çине сулса ярса унăн хăлхине
касса татнă. 52 Иисус вара ăна çапла каланă: «Хĕçне
хăй вырăнне чик, мĕншĕн тесен хĕç çĕклекенсем
хĕçпех пĕтĕç. 53 Е Эпĕ халĕ Аттемрен тархасласа
ыйтма пултараймăп тетĕн-и? Ыйтсан, Вăл çак
самантрах Ман патăма вун икĕ пулккă та ытла
ангел ярĕ. 54 Çырнинче çапла пулмалла тесе калани
вара епле пурнăçланĕ?» 55 Унтан Иисус халăха
каланă: «Мана тытма эсир, вăрă-хураха хирĕç тухнă
пек, хĕçсемпе, шалçасемпе тухрăр. Эпĕ куллен сире
Турă Çуртĕнче вĕрентсе лартăм, ун чухне эсир
Мана тĕкĕнмерĕр. 56 Çакă йăлтах пророксем çырса
хăварни пурнăçланмашкăн пулса иртрĕ». Çавăн
чухне мĕн пур вĕренекенĕ Ăна пăрахса тарнă.

*Иисуса Каиафа патне илсе пыни*

(Мк. 14:53-65; Лк. 22:54-55, 63-71; Ин. 18:13-14, 19-24)

57 Иисуса тытакансем Ăна Каиафа ятлă аслă
священник патне илсе пынă. Унта саккун
вĕрентӳçисемпе ятлă-сумлă çынсем те пухăннă
пулнă. 58 Аслă священник çурчĕ патне çитиччченех
Петр Иисус хыççăн чылай каярахра утса пынă. Вăл
ĕç епле вĕçленессе курас шухăшпа картишне кĕнĕ
те унти тарçăсемпе пĕрле ларнă. 59 Аслă
священниксемпе ятлă-сумлă çынсем тата
синедрионра ларакан ытти çынсем, Иисуса
вĕлерттерес тесе, Ăна судра айăпламалли суя
сăлтав шыранă. 60 Ун çинчен суйса айăп
кăтартакансем нумаййăн пынă пулин те,
вĕлермеллех айăплама сăлтав тупăнман.
Юлашкинчен суйса айăп кăтартакансем иккĕн
пынă. 61 Вĕсем çапла каланă: «„Эпĕ Турă Çуртне
пăсса виçĕ кунра çĕнĕрен туса лартма пултаратăп“,

– тетчĕ Вăл». 62 Аслă священник ури çине тăнă та
Иисуса каланă: «Вĕсем Сана хирĕç айăп кăтартаççĕ,
Санăн тавăрса каламалли нимĕн те çук-им?»
63 Иисус чĕнмен. Вара аслă священник Ăна çапла
каланă: «Чĕрĕ Турă ятне асăнса хистесех ыйтатăп
Санран, каласамччĕ пире: Эсĕ Христос-и? Турă
Ывăлĕ-и?» 64 «Эсĕ хăвах çапла каларăн, – тенĕ ăна
Иисус. – Эпĕ сире унтан та ытларах калатăп:
паянтан пуçласа, малашлăхра, эсир Этем Ывăлĕ,
Хăватлин сылтăм енче ларса, тӳпери пĕлĕтсем
çинче килнине курăр». 65 Çакна илтсен, тарăхнипе,
священник хăй çиййĕнчи тумтирне çурса ярса
каланă: «Вăл Турра хурларĕ! Унăн айăпне
кăтартакан мĕн тума кирлĕ тата пире? Вăл Турра
хурланине, акă, хăвăрах илтрĕр! 66 Çакăн пирки
эсир мĕн шухăшлатăр?» «Айăплă, вĕлермелле», –
тавăрса каланă вĕсем. 67 Вара çынсем Ăна питрен
сурнă, çупа-çупа янă, теприсем тата çапнă пеккĕн
68 ыйтнă: «Эй, Христос! Пророкла кала-ха: Хăвна кам
çапрĕ?»

*Петр Иисуса пĕлмĕш пулни*

(Мк. 14:66-72; Лк. 22:56-62; Ин. 18:15-18, 25-27)

69 Петр çав хушăра тулта, картишĕнче, ларнă. Ун
патне пĕр хĕрарăм тарçă пынă та: «Эсĕ те
Галилейăри Иисуспа пĕрлеччĕ», – тенĕ. 70 Петр
пурин умĕнчех Иисусран тунса: «Эсĕ мĕн çинчен
каланине пĕлместĕп», – тенĕ. 71 Вăл хапхаран тухнă
чухне ăна тепĕр хĕрарăм тарçă асăрханă та унти
çынсене каланă: «Ак çакă та Иисус Назорейпа
пĕрлеччĕ». 72 «Эпĕ вăл Çынна пĕлместĕпех», – тупа
тусах туннă каллех Петр. 73 Тепĕртакран çавăнта
тăракансем Петр патне пырса: «Эсĕ чăнах та вĕсен
ушкăнĕнченех, ку калаçни-тунинчен те паллă», –
тенĕ. 74 Вăл вара пĕтĕм чĕререн: «Эпĕ вăл Çынна
пĕлместĕпех», – тесе тупа тăва пуçланă. Çав
самантрах автан авăтса янă. 75 Петр Иисус хăйне
автан авăтиччен эсĕ Мана виçĕ хутчен пĕлмĕш
пулăн тесе каланине аса илнĕ. Вара вăл
картишĕнчен тухнă та татăлсах йĕнĕ.

*Иисуса Пилат патне илсе кайни. Иуда вилĕмĕ*

(Мк. 15:1; Лк. 23:1-2; Ин. 18:28-32)

27 Тепĕр кунне тул çутăлсанах аслă
священниксем тата халăх хушшинчи ятлă-
сумлă çынсем пурте пуçтарăннă та Иисуса
вĕлерттерме йышăннă. 2 Вара Ăна çыхтарнă та Рим
лартнă Понтий Пилат пуçлăх патне илсе кайнă.
3 Иисуса сутнă Иуда, Ăна вĕлерме йышăннине
пĕлсен, ӳкĕннипе вăтăр кĕмĕл укçине аслă
священниксемпе ятлă-сумлă çынсене тавăрса панă.
4 «Айăпсăр Çынна тытса парса çылăха кĕтĕм», –
тенĕ вăл пуçлăхсене. Лешсем вара çапла каланă:
«Пире мĕн ĕç пур? Хăвăнне ху пĕл». 5 Вара Иуда
кĕмĕл укçисене Турă Çуртĕнче пăрахнă та хăй кайса
çакăнса вилнĕ. 6 Аслă священниксем, пăрахнă
укçана пуçтарса, çапла каланă: «Ку – юн укçи,
çавăнпа ăна Турă Çурчĕн укçа арчине хума
юрамасть». 7 Канашланă хыççăн вĕсем ютран килнĕ
çул çӳрекенсем валли масар вырăнĕ тума çав
укçапа пĕр чӳлмекçĕрен çĕр илнĕ. 8 Çавăнтанпа вăл
çĕре халичченех «Юн çĕрĕ» теççĕ. 9 Çапла вара
Иеремия пророк урлă калани пурнăçланнă. Пророк
çапла каланă пулнă: «Израиль ывăлĕсем вăтăр
кĕмĕл укçалăх Хакланине çавăн чухлĕ укçаллах
илчĕç. 10 Хуçа Турă мана пĕлтернĕ пекех, çав укçана
чӳлмекçĕ çĕрĕшĕн тӳлерĕç».

*Иисус Пилат патĕнче*

(Мк. 15:2-5; Лк. 23:3-5; Ин. 18:33-38)

11 Çав вăхăтра Иисуса Пилат патне илсе пынă.
«Эсĕ Иудея Патши-и?» – тесе ыйтнă Унран пуçлăх.
«Эсĕ ху çапла тесе каларăн», – тавăрнă Иисус.
12 Хăйне аслă священниксемпе ятлă-сумлă çынсем
айăпланă чухне вара Вăл нимĕн те чĕнмен. 13 Унтан
Пилат Ăна çапла каланă: «Илтместĕн-им, Сана
хирĕç мĕн чухлĕн айăп кăтартаççĕ?» 14 Иисус хăйĕн
пĕр сăмахне те хирĕç тавăрса каламаннине курсан
Пилат питĕ тĕлĕннĕ.

*Иисуса вĕлерме ыйтни*

(Мк. 15:6-15; Лк. 23:13-25; Ин. 18:39–19:16)

15 Пасха уявĕ тĕлне Рим лартнă пуçлăхăн тĕрмене
хупнисенчен пĕрне халăх ыйтнипе ирĕке кăларас
йăла пулнă. 16 Çавăн чухне тĕрмере пĕр Варавва
ятлă паллă вăрă-хурах ларнă. 17 Хăйĕн кермене
умĕнче халăх пухăнсан Пилат çынсене çапла
каланă: «Эсир манран хăшне ирĕке кăларма
ыйтатăр: Вараввăна е Турă Суйласа илни текен
Иисуса?» 18 Вăл Иисуса кураймасăр тытса панине
пĕлнĕрен çапла ыйтнă. 19 Тата вăл суд тумалли
вырăнта ларнă чухне арăмĕ ун патне пĕр çынна
çапла калама хушса янă пулнă: «Çав Айăпсăрскерне
нимĕн те ан ту! Эпĕ кĕçĕр тĕлĕкре Уншăн хытă
асаплантăм». 20 Çапах аслă священниксемпе ятлă-
сумлă çынсем Вараввăна кăларма, Иисуса вĕлерме
ыйтмашкăн халăха ӳкĕте кĕртнĕ-кĕртнех. 21 «Сире
иккĕшĕнчен хăшне кăларса памалла?» – тесе ыйтнă
пуçлăх халăхран. «Вараввăна», – тенĕ çынсем.
22 «Турă Суйласа илни текен Иисуса вара манăн мĕн
тумалла?» – тенĕ вĕсене Пилат. «Пăталаттармалла!»
– тенĕ пурте. 23 «Мĕн усалли тунă вара Вăл?» – тенĕ
пуçлăх. Анчах та халăх тата хытăрах: «Пăталаттар
Ăна!» – тесе кăшкăрнă. 24 Пилат вара, нимĕн тума
çуккине кура, халăх ытларах та ытларах
пăлханнине кура, шыв илсе халăх умĕнче аллине
çунă та: «Çак Айăпсăрскерĕн юнĕ тăкăннишĕн эпĕ
яваплă мар, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр», – тенĕ.
25 «Унăн юнĕ пирĕн çинче, пирĕн ачасем çинче
пултăр!» – тавăрнă ăна хирĕç пĕтĕм халăх. 26 Унтан
Пилат Вараввăна кăларса янă, Иисуса, чĕн пушăпа
хĕнеттерсе, пăталама хушнă.

*Иисусран мăшкăллани*

(Мк. 15:16-20; Ин. 19:2-3)

27 Çавăн чух Рим лартнă пуçлăхăн салтакĕсем
Иисуса преторине илсе кĕртнĕ те Ун тавра ытти
салтаксене пулккипех пуçтарнă. 28 Вĕсем Ăна
хывăнтарса патшалла хĕрлĕ тум тăхăнтартнă. 29 Ун
пуçне йĕплĕ кӳкен хуллинчен явнă пуç кăшăлĕ
тăхăнтартнă, сылтăм аллине туя тыттарнă.
Салтаксем Ун умне чĕркуçленсе ларнă та

мăшкăлла-мăшкăлла: «Сывă пултăр Иудея Патши!»
– тесе кулнă. 30 Салтаксем Ун çине сурнă, туйине
илсе Ăна пуçĕнчен çапнă. 31 Çапла мăшкăлласан-
мăшкăлласан, хĕрлĕ тумне хывтарса, Хăйĕн
тумтирне тăхăнтартнă та Ăна пăталама илсе кайнă.

*Иисус Христоса пăталани*

(Мк. 15:21-32; Лк. 23:26-43; Ин. 19:17-27)

32 Тухнă чухне вĕсем Симон ятлă Киринея
çыннине тĕл пулнă, Иисусăн хĕресне йăтса пыма
çавна хушнă. 33 Голгофа ятлă вырăна çитсессĕн –
Голгофа тени «Пуç купташки» тенине пĕлтерет, –
34 Иисуса ват йӳççипе хĕрхӳлентернĕ хĕрлĕ эрех
панă, ăна тутанса пăхсан Иисус ĕçесшĕн пулман.
35 Пăталанă хыççăн салтаксем Унăн тумтирне шăпа
ярса валеçнĕ. 36 Унтан хайхисем пăталанă Иисуса
хураллама ларнă. 37 Унăн пуçĕ тĕлне: «Çакă – Иисус,
Иудея Патши», – тесе айăпласа çырнă хăма татăкĕ
çапса хунă. 38 Çавăн чухнех Иисуспа пĕрле икĕ вăрă-
хураха, пĕрне – сылтăм енне, теприне сулахай енне
пăталанă. 39 Иртен-çӳренсем пуçĕсене сулла-сулла
Ăна хурласа калаçнă. 40 «Турă Çуртне Пăсакан, ăна
виçĕ кун хушшинче çĕнĕрен Туса лартакан! Эсĕ
Турă Ывăлĕ пулсан Хăвна Ху çăлсам, хĕрес çинчен
анса пăх-ха», – тенĕ вĕсем. 41 Аслă священниксемпе
саккун вĕрентӳçисем те, ятлă-сумлă çынсемпе
фарисейсем те çавнашкалах Унран мăшкăлланă:
42 «Ыттисене çăлатчĕ, Хăйне Хăй çăлаймасть! Вăл
Израиль Патши пулсан, халĕ хĕрес çинчен анса
кăтарттăр, вара эпир те Ăна ĕненме пуçлăпăр.
43 Вăл Турра шанатчĕ; Турра юрăхлăскерех пулсан,
халĕ эппин Турă çăлтăр Ăна. „Эпĕ – Турă Ывăлĕ,“ –
тетчĕ-çке-ха Вăл». 44 Хăйпе пĕрле пăталанă вăрă-
хурахсем те Унран мăшкăлласа кулнă.

*Иисус Христос вилĕмĕ*

(Мк. 15:33-41; Лк. 23:44-49; Ин. 19:28-30)

45 Кăнтăрла, вун икĕ сехетрен пуçласа виççĕччен,
пĕтĕм çĕр çинче тĕттĕмленсе ларнă. 46 Виçĕ сехет
тĕлĕнче вара Иисус хыттăн кăшкăрса янă: «Или!
Или! Лама савахфани?» Çакă вăл: «Эй, Турăçăм!
Турăçăм! Мĕншĕн Эсĕ Мана пăрахрăн?» – тени
пулать. 47 Çакна илтсен çавăнта тăракансенчен
хăшĕ-пĕри каланă: «Вăл Илияна пулăшма чĕнет».
48 Çав самантрах вĕсенчен пĕри чупса кайнă та,
хĕрхӳлентернĕ хĕрлĕ эрех сăхтарнă мунчалана
патак вĕçне тирсе, Иисуса ĕçме панă. 49 «Тăхтăр-ха,
пăхса тăрар, – тенĕ ыттисем, – Илия Ăна çăлма
килет-и?» 50 Иисус тепĕр хут хыттăн кăшкăрса янă
та, Унăн юлашки сывлăшĕ тухнă.
51 Çав вăхăтра Турă Çуртĕнчи чаршав çӳлтен аяла
çитиччен çурмалла çурăлса аннă, çĕр чĕтреннĕ, чул
ту хысакĕсем те çурăла-çурăла кайнă.
52 Тупăклăхсем уçăлнă та, вилнĕ сăваплă çынсенчен
нумайăшĕ чĕрĕлсе тăнă. 53 Вĕсем Иисус чĕрĕлсе
тăнă хыççăн тупăклăхсенчен тухса сăваплă
Иерусалим хулине кĕнине нумай çын курнă. 54 Рим
çĕрпĕвĕ тата унпа пĕрле Иисуса хураллакансем çĕр
чĕтреннине, тем те пĕр пулса иртнине курсан
сехрисем хăпнипе каланă: «Ку чăнах та Турă Ывăлĕ
пулнă-мĕн!»
55 Çавăнта тата Иисуса пулăшса Ун хыççăн
Галилейăранах çӳренĕ хĕрарăмсенчен нумайăшĕ
пулнă. Вĕсем мĕн пулса иртнине аякран пăхса тăнă.
56 Вĕсен хушшинче Мария Магдалина, Иаковпа
Иосия амăшĕ Мария тата Зеведей ывăлĕсен амăшĕ
те пулнă.

*Иисус ӳтне тупăклăха хуни*

(Мк. 15:42-47; Лк. 23:50-56; Ин. 19:38-42)

57 Каç пулсан унта Аримафея хулинче çуралса ӳснĕ
Иосиф ятлă пĕр пуян çын пынă; вăл та Иисусăн
вĕренекенĕ пулнă. 58 Вăл Пилат патне кайса Иисус
ӳтне пама тархасланă. Пилат вара Иисус ӳтне пама
хушнă. 59 Иосиф Иисус ӳтне илсе таса пирпе
чĕркенĕ те 60 хăйне валли чул ту хысакне алтса тунă
çĕнĕ тупăклăха хунă. Унтан тупăклăха кĕмелли
шăтăка пысăк чулпа хупласа хăварса кайнă.
61 Мария Магдалинăпа тепĕр Мария вара çавăнтах,
тупăклăх умĕнчех, ларнă.

### Тупăклăх умне хурал тăратни

62 Тепĕр кунне, шăмат кун, аслă священниксемпе
фарисейсем Пилат патне пухăннă. 63 «Ырă
çыннăмăр, – тенĕ вĕсем, – леш ултавçă Хăй чĕрĕ
чухне „виçĕ кунран чĕрĕлсе тăрăп“ тенине аса
илтĕмĕр-ха эпир. 64 Çавăнпа Иисусăн тупăклăхне
пĕр виçĕ кун хушши хураллама хушсам.
Вĕренекенĕсем Унăн ӳтне вăрласа ан кайччăрччĕ,
кайран халăха: „Вăл чĕрĕлсе тăнă!“ – тесе ан
çӳреччĕрччĕ. Ĕç-пуç кунашкал кайсан вара çак
юлашки ултав малтанхинчен те усалтарах пулĕ».
65 «Сирĕн хуралçăсем пур, кайăр та хăвăра кирлĕ
пек хураллăр», – тенĕ Пилат. 66 Вĕсем вара
тупăклăха хураллама кайнă, хупланă чулне
пичетлесех паллă тунă, хурал тăратнă.

*Иисус Христос чĕрĕлсе тăни*

(Мк. 16:1-8; Лк. 24:1-12; Ин. 20:1-10)

28 Шăмат кун иртсен, эрнен малтанхи кунĕнче,
тул çутăлнă чух Мария Магдалинăпа тепĕр
Мария тупăклăха пăхма кайнă. 2 Çав вăхăтра питĕ
вăйлăн çĕр чĕтренсе илнĕ, мĕншĕн тесен Хуçа
Туррăмăрăн ангелĕ тӳперен анса тупăклăх умĕнчи
чула йăвантарса янă та хăй ун çине ларнă. 3 Ангел
çиçĕм пек ялтăртатса тăнă, тумтирĕ юр пек шурă
пулнă. 4 Хурал тăракансем унран хăранипе вилесле
чĕтресе ӳкнĕ. 5 «Ан хăрăр, – тенĕ вара ангел
хĕрарăмсене, – пăталанă Иисуса эсир шыранине
пĕлетĕп. 6 Вăл кунта çук ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен, Хăй
каланă пекех, Вăл вилĕмрен чĕрĕлнĕ. Хуçамăра
хунă вырăна кайса пăхăр та 7 Вăл вилĕмрен
чĕрĕлсе тăни çинчен, сирĕнтен маларах
Галилейăна çитсе кĕтсе тăрасси çинчен Унăн
вĕренекенĕсене хăвăртрах кайса пĕлтерĕр. Эсир
Ăна Галилейăра тĕл пулăр. Ман сире çакна
каламалли пурччĕ». 8 Хĕрарăмсем тупăклăх
патĕнчен васкасах кайнă. Вĕсем пĕр хăраса та пĕр
савăнса Иисусăн вĕренекенĕсене пĕлтерме чупнă.

9 Вĕренекенĕсене калама кайнă чух сасартăк
вĕсене çул çинче Иисус тĕл пулнă та: «Сывлăх
сунатăп!» – тенĕ. Вĕсем вара патнерех пынă та
чĕркуçленсе ларнă, уринчен тытсах пуççапнă.
10 Çавăн чухне Иисус вĕсене: «Ан хăрăр, кайăр та
ĕненекен тăванăмсене Галилейăна пыма калăр.
Мана вĕсем унта тĕл пулĕç», – тенĕ.
11 Хĕрарăмсем çул çинче чухне хăш-пĕр
хуралçăсем хулана çитнĕ те мĕн пулса иртнине
пĕтĕмпех аслă священниксене каласа панă. 12 Вара
аслă священниксем, ятлă-сумлă çынсемпе калаçса
татăлса, салтаксене нумай укçа панă та 13 çапла сас-
хура кăларма хушнă: «Çĕрле, эпир çывăрнă чухне,
вĕренекенĕсем пынă та Унăн ӳтне вăрласа кайнă».
14 «Çак сас-хура Рим лартнă пуçлăх хăлхине кĕрес
пулсан, – тенĕ вĕсем, – эпир хамăрах майлашăпăр,
айăпĕ сирĕн çинче пулмĕ». 15 Хуралçăсем вара
укçине илнĕ те хăйсене вĕрентнĕ пек сас-хура
сарса çӳренĕ. Çак суя сăмах иудейсем хушшинче
халичченех çӳрет.

*Чĕрĕлсе тăнă Иисус вун пĕр апостола курăнни*

(Мк. 16:14-18; Лк. 24:36-49; Ин. 20:19-23; Ĕç-хĕл. 1:6-8)

16 Вун пĕр вĕренекенĕ Галилейăна, Иисус пыма
хушнă ту çине, кайнă. 17 Иисуса курсан вĕсем Ăна
ӳксе пуççапнă, теприсем тата иккĕленсе кайнă.
18 Вара Иисус, патнерех пырса, çапла каланă:
«Пĕлĕт çинче те, çĕр çинче те пуç пулма Мана тулли
ирĕк панă. 19 Ĕнтĕ кайăр та Ашшĕн, Ывăлĕн, Святой
Сывлăшăн ячĕпе шыва кĕртсе мĕн пур халăхсене
ӳкĕтлесе вĕрентĕр. 20 Вĕсене Эпĕ сире каланă пил-
хушусене тытса пурăнма вĕрентĕр. Эпĕ тĕнче
пĕтиччченех куллен сирĕнпе пулăп». Аминь.

# Марк

*Шыва кӗртекен Иоанн вӗрентсе калани*

(Мф. 3:1-12; Лк. 3:1-9, 15-17; Ин. 1:19-28)

1 Турӑ Ывӑлӗ Иисус Христос ҫинчен пӗлтерекен Ырӑ Хыпар пророксем ҫырса хӑварнӑ пекех пуҫланать: «Акӑ Эпӗ Сан умӑнтан Хамӑн хыпарҫӑна яратӑп, вӑл Сан валли ҫул хатӗрлесе хурӗ». «Пуш хирте чӗнекенӗн сасси илтӗнет: „Хуҫа Турӑ валли ҫул хатӗрлӗр, Вӑл утас ҫулсене тӳрлетӗр!“» [4] Ҫавӑнпа та Иоанн килнӗ, вӑл пуш хирте тӗне кӗртнӗ, ҫылӑхсене каҫарттармашкӑн ӳкӗнсе шыва кӗме ӳкӗтленӗ. [5] Вара ун патне пӗтӗм Иудея ҫӗрӗнчен те, Иерусалим хулинчен те халӑх пыма пуҫланӑ. Иоанн вӗсене ҫылӑхӗсенчен ӳкӗнтерсе Иордан юхан шывӗнче пурне те шыва кӗртнӗ. [6] Тӑхӑнасса Иоанн тӗве ҫӑмӗнчен тунӑ тумтир тӑхӑнса, пилӗкне чӗн пиҫиххи ҫыхса ҫӳренӗ. Ҫиессе те вӑл хӗрлӗ шӑрчӑк тата хӑвӑлсенче тупкаланӑ пыл ҫисе пурӑннӑ. [7] Вӑл ҫапла ӳкӗтлесе вӗрентнӗ: «Ман хыҫҫӑн манран Хӑватли килет, эпӗ Унӑн пушмакне пӗшкӗнсе хывма та тивӗҫлӗ мар. [8] Эпӗ сире шывпа тӗне кӗртрӗм, Вӑл вара сире Святой Сывлӑшпа тӗне кӗртӗ».

*Иисуса шыва кӗртни*

(Мф. 3:13-17; Лк. 3:21-22)

[9] Ҫав кунсенче Галилея ҫӗрӗнчи Назарет хулинчен Иоанн патне Иисус та пынӑ. Иоанн Ӑна Иорданра шыва кӗртнӗ. [10] Иисус шывран тухнӑ самантрах Иоанн тӳпе уҫӑлса кайнине, Святой Сывлӑш кӑвакарчӑн пек курӑнса Ун ҫине аннине асӑрханӑ . [11] Тата тӳперен ҫапла сасӑ илтӗннӗ: «Эсӗ Манӑн савнӑ Ывӑлӑм, Манӑн ырӑ кӑмӑлӑм Санра!»

*Иисуса шуйттан илӗртсе тӗрӗслени*

(Мф. 4:1-11; Лк. 4:1-13)

[12] Ҫавӑн хыҫҫӑнах Сывлӑш Иисуса пуш хире ертсе кайнӑ. [13] Пуш хирте Ӑна шуйттан хӗрӗх кун илӗртсе тӗрӗсленӗ. Иисус тискер кайӑксем хушшинче пурӑннӑ, ангелсем Уншӑн ӗҫлесе тӑнӑ.

[14] Иоана тӗрмене тытса хупнӑ. Иисус вара Галилейӑна пынӑ та Турӑ Патшалӑхӗн Ырӑ Хыпарне ӳкӗтлесе вӗрентнӗ. [15] Вӑл ҫапла каласа вӗрентнӗ: «Ӗнтӗ вӑхӑт ҫитрӗ, Турӑ Патшалӑхӗ ҫывхарчӗ: ӳкӗнӗр те Ырӑ Хыпара ӗненӗр!»

*Иисусӑн малтанхи вӗренекенӗсем*

(Мф. 4:18-22; Лк. 5:1-11)

[16] Пӗррехинче Иисус Галилея тинӗсӗ хӗррипе иртсе пынӑ. Ҫавӑн чухне Вӑл тинӗсе сӗреке-тетел пӑрахакан пӗртӑвансене – Симонпа унӑн шӑллӗне Андрея – курнӑ. Вӗсем пулӑҫӑсем пулнӑ. [17] Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Ман хыҫҫӑн пыракансем пулӑр, Эпӗ сире этем чунӗсене тытакансем тӑвӑп». [18] Вӗсем вара ҫав самантрах сӗреке-тетелӗсене хӑварса Иисус хыҫҫӑн кайнӑ. [19] Тепӗртак кайсан Вӑл Зеведей ывӑлӗсене – Иаковпа унӑн шӑллӗне Иоана – курнӑ. Вӗсем те кимӗ ҫинче сӗреке-тетелӗсене юсаса тӑнӑ. [20] Ҫавӑнтах Иисус вӗсене Хӑй хыҫҫӑн пыракансем пулма чӗннӗ. Вӗсем вара хӑйсен ашшӗне Зеведея тарҫисемпе пӗрле кимӗ ҫинче хӑварса Ун хыҫҫӑн кайнӑ.

*Усал сывлӑша хӑваласа кӑларни*

(Лк. 4:31-37)

[21] Акӑ ӗнтӗ вӗсем Капернаум хулине ҫитнӗ. Унта Вӑл пирвайхи шӑмат кунах синагогӑра вӗренте пуҫланӑ. [22] Ҫынсем Унӑн вӗрентӗвӗнчен тӗлӗнмеллипех тӗлӗннӗ, мӗншӗн тесен Вӑл саккун вӗрентӳҫисем пек мар, Турӑ хӑват панӑ пек вӗрентнӗ. [23] Вӗсен синагогинче усал ернӗ пӗр ҫын пулнӑ, вӑл кӑшкӑрса янӑ: [24] «Эй, Назарет Иисусӗ! Санӑн пирӗнпе мӗн ӗҫ пур ара? Эсӗ пире пӗтерме килнӗ! Эсӗ камне эпӗ пӗлетӗп. Эсӗ – Туррӑн Святойӗ!» [25] «Чарӑн! – ҫирӗппӗн хушнӑ Иисус. – Тух ун ӑшӗнчен!» [26] Вара усал сывлӑш ҫынна чӗтретсе пӑрахса, хыттӑн кӑшкӑрса ун ӑшӗнчен тухнӑ. [27] Пурте хӑраса-тӗлӗнсе кайса пӗр-пӗринчен ҫапла ыйтнӑ: «Мӗн пулчӗ ку? Мӗнле ҫӗнӗ вӗрентӳ ку? Вӑл усал сывлӑшсене те Хӑйӗн вӑй-хӑвачӗпе хушать, лешсем Ӑна пӑхӑнаҫҫӗ». [28] Часах пӗтӗм Галилея тӑрӑхӗнче Ун ҫинчен хыпар сарӑлнӑ.

*Иисус нумай ҫынна чиртен сыватни*

(Мф. 8:14-17; Лк. 4:38-41)

[29] Ҫавӑн хыҫҫӑн тӳрех Иисус синагогӑран тухнӑ та Иаковпа тата Иоанпа пӗрле Симонпа Андрей килне пынӑ. [30] Симонӑн хунямӑшӗ сив чирпе выртнӑ пулнӑ. Ҫийӗнчех ун пирки Иисуса каласа панӑ. [31] Иисус ун патне пынӑ та аллинчен тытса ҫӗклесе тӑратнӑ. Хӗрарӑмӑн чирӗ ҫавӑнтах иртсе кайнӑ, вара вӑл вӗсене хӑналама пуҫланӑ. [32] Хӗвел ансан, каҫ пуласпа, Иисус патне чирлисемпе усал ернисене пурне те иле-иле пынӑ. [33] Пӗтӗм хулипех алӑк умне пуҫтарӑннӑ. [34] Чылайӑшне Вӑл чир-чӗртен сыватнӑ, усал сывлӑшсене те нумай хӑваласа кӑларнӑ. Усалсене Вӑл Хӑй Христос пулнине пӗлни ҫинчен калама чарнӑ.

*Иисус Галилейӑра вӗрентни*

(Лк. 4:42-44)

[35] Ирхине вара Иисус ирех тӑрса тухнӑ та ҫын ҫук вырӑна кӗлтума кайнӑ. [36] Ҫапах та Симон тата унпа пӗрле пулнисем Ун хыҫҫӑн васканӑ. [37] «Сана пурте шыраҫҫӗ», – тенӗ вӗсем Иисуса тупсан. [38] «Манӑн ҫывӑхри ялсемпе хуласенче те ӳкӗтлесе

вĕрентмелле, атьăр унта каяр, мĕншĕн тесен Эпĕ
тĕнчене вĕрентме килнĕ», – тенĕ Иисус вĕсене.
39 Вара Вăл пĕтĕм Галилея тăрăх çӳресе унти
синагогăсенче ӳкĕтлесе вĕрентнĕ тата усал
сывлăшсене хăваласа кăларнă.

*Иисус юхан-суранлă çынна сыватни*

(Мф. 8:1-4; Лк. 5:12-16)

40 Пĕррехинче Ун патне юхан-суранлă çын пынă
та чĕркуçленсе ларса Ăна йăлăннă: «Сыватас
тесессĕн, Эсĕ мана сыватма пултаратăнах». 41 Иисус,
хĕрхенсе, аллине тăснă та ăна сĕртĕнсе çапла
каланă: «Чиртен тасатас тетĕп, сывал». 42 Çакна
каласанах ун çинчи юхан-суран пĕтнĕ, ӳчĕ тап-таса
пулса тăнă. 43 Иисус ун çине çирĕппĕн пăхнă та ăна
çав самантрах кайма хушнă. 44 «Асту, никама та ним
те ан кала, – тенĕ ăна Иисус. – Хăвна священника
кайса кăтарт та ху тасалнăшăн Моисей Турра кӳме
хушнă парнене кӳр. Çакă ху сывалнине пĕлтерни
пулать те ĕнтĕ». 45 Анчах та лешĕ, кайнă-кайманах,
мĕн пулса иртни çинчен пурне те пĕлтерсе, каласа
çӳреме пуçланă. Иисусăн вара хулана куçкĕретĕнех
кĕресси пĕтнĕ, Вăл хула тулашĕнче, ялсăр
вырăнсенче çӳренĕ. Ун патне халăх пур çĕртен те
пырсах тăнă.

*Паралич çапнă çынна сыватни*

(Мф. 9:1-8; Лк. 5:17-26)

2 Иисус каллех Капернаума пырсан темиçе
кунранах Вăл килне тавăрăнни çинчен хыпар
сарăлнă. 2 Нумаях та вăхăт иртмен, алăк патĕнче те
вырăн юлмиех халăх пуçтарăннă. Иисус çынсене
Турă сăмахне вĕрентнĕ. 3 Çавăн чухне тăваттăн Ун
патне паралич çапнă çынна çĕклесе пынă. 4 Халăх
йышлă пулнăран вĕсем Иисус патне çывхарайман.
Вара вĕсем, çурт виттине пĕр çĕртен сирсе,
паралич çапнă çынна выртнă вырăнĕпех Иисус
тĕлне антарнă. 5 Иисус вĕсен ĕненĕвне курса
паралич çапнă çынна çапла каланă: «Ачам, санăн
çылăхусем каçарăнчĕç». 6 Çавăнта темиçе саккун
вĕрентӳçи ларнă, вĕсем хăйсен ăшĕнче
шухăшланă: 7 «Ку мĕн капла Турра хурлать? Пĕртен-
пĕр Турăсăр пуçне çылăх каçарма кам пултартăр?»
8 Иисус Хăйĕн чун-чĕмĕпе вĕсен ăшри шухăшĕсене
çав самантрах пĕлсе çапла каланă: «Мĕншĕн эсир
хăвăр ăшăрта апла шухăшлатăр? 9 Паралич çапнă
çынна мĕн калама çăмăлтарах? „Санăн çылăхусем
каçарăнчĕç“ теме-и е: „Тăр, вырăнна ил те утса çӳре“
теме? 10 Анчах та Этем Ывăлĕн çĕр çинче çылăх
каçарма та ирĕк пуррине сире пĕлтерессĕм килет».
Çавна пĕлтерес тесе Вăл паралич çапнă çынна
каланă: 11 «Сана калатăп: тăр та сарнă вырăнна илсе
киле кай». 12 Лешĕ çав самантрах тăнă та, вырăнне
илсе, пурин умĕнчех тухса кайнă. Вара пурте
шалтах тĕлĕнсе тата Турра мухтаса: «Кунашкаллине
эпир нихăçан та курманччĕ», – тенĕ.

*Иисус Левие чĕнни*

(Мф. 9:9-13; Лк. 5:27-32)

13 Иисус каллех тинĕс хĕррине кайнă. Пĕтĕм халăх
Ун тавра пуçтарăннă, Вăл халăха вĕрентнĕ. 14 Иртсе
пынă чухне Вăл Алфей ывăлне Левие, налук
пухмалли çуртра лараканскере, курнă. «Ман
хыçăмран пыракан пул», – тенĕ ăна Иисус. Лешĕ
тăнă та Ун хыçĕнчен кайнă.
15 Пĕррехинче Иисуспа вĕренекенĕсем Левий
килĕнче хăналаннă. Вĕсемпе пĕрле тата налук
пухакансемпе çылăхлă çынсем те нумаййăн
апатланнă, вĕсем Ун хыçĕнчен яланах йышлăн
çӳренĕ. 16 Иисус налук пухакансемпе тата çылăхлă
çынсемпе пĕрле апат çинине курсан фарисейсен
саккун вĕрентӳçисем Унăн вĕренекенĕсене çапла
каланă: «Епле-ха Вăл налук пухакансемпе, çылăхлă
çынсемпе пĕрле ĕçсе çиет?» 17 Çакна илтсен Иисус
вĕсене: «Тухтăр сыввисене мар, чирлисене кирлĕ.
Эпĕ тӳрĕ пурăнакансене мар, çылăхлисене ӳкĕнме
чĕнмешкĕн килнĕ», – тенĕ.

*Типĕ тытасси çинчен ыйтни*

(Мф. 9:14-17; Лк. 5:33-39)

18 Иоанн вĕренекенĕсемпе фарисейсен
вĕренекенĕсем типĕ тытнă. Вĕсем Иисус патне
пынă та çапла каланă: «Иоанн вĕренекенĕсем те,
фарисейсен вĕренекенĕсем те типĕ тытаççĕ, Санăн
вĕренекенӳсем мĕншĕн типĕ тытмаççĕ?» 19 Иисус
вĕсене çапла каланă: «Туй ачисем кĕрӳ каччă
хăйсемпе пĕрле чухне типĕ тытĕç-и? Çук, кĕрӳ
каччă хăйсемпе чухне вĕсем типĕ тытма
пултараймĕç. 20 Акă кĕрӳ каччăна вĕсенчен туртса
илес кунсем çитĕç, çав кунсенче вара вĕсем типĕ
тытĕç.
21 Никам та кивĕ тумтир çине çĕнĕ пир саплăк
лартмасть. Апла тусан çĕнĕ саплăкĕ кивĕ пирне
тăпăлтарса кăларĕ, çĕтĕкĕ вара татах пысăкланĕ.
22 Тин тунă хĕрлĕ эрехе те кивĕ сăран хутаçа никам
та тултармасть. Апла тусан çĕнĕ эрех кивĕ сăран
хутаçа çурса ярĕ те, эрехĕ те юхса тухĕ, хутаçĕ те сая
кайĕ. Тин тунă хĕрлĕ эрехе çĕнĕ сăран хутаçа
ямалла».

*Христос тата шăмат кун*

(Мф. 12:1-8; Лк. 6:1-5)

23 Пĕррехинче шăмат кун Иисусăн тырă пуссипе
иртсе пымалла пулнă. Унăн вĕренекенĕсем çула
май пучахсене тата-тата илнĕ. 24 Иисуса
фарисейсем çапла каланă: «Пăх-ха, мĕн хăтланаççĕ
вĕсем шăмат кун?! Тума юраманнине тăваççĕ».
25 Иисус вĕсене тавăрса каланă: «Пĕррехинче Давид
хăй тата унпа пĕрле пулнисем выçăпа аптăраса
çитсен, вăл мĕн тунине нихăçан та вуламан-им
эсир? 26 Епле вăл, Авиафар аслă священникра ларнă
чухне, кĕлĕ çуртне кĕрсе Турра халалланă
çăкăрсене çинĕ, çав çăкăрсене хăйпе пĕрле
пулнисене те панă. Вĕсене священниксемсĕр пуçне
никамăн та çиме юраман вĕт-ха». 27 Унтан вĕсене
çапла каланă: «Этеме шăмат куншăн туман, шăмат
куна этемшĕн тунă; 28 çавăнпа та Этем Ывăлĕ –
шăмат кун хуçи те».

*Алли типнĕ çынна сыватни*

(Мф. 12:9-14; Лк. 6:6-11)

3 Иисус каллех синагогăна пынă; унта алли
типнĕ çын пулнă. 2 Иисуса айăплама сăлтав
тупас шутпа, çак çынна Вăл шăмат кун сыватмĕ-и

тесе, хăшĕ-пĕрисем Ăна сăнаса тăнă. 3 Иисус алли
типнĕ çынна çапла каланă: «Маларах тух-ха».
4 Лешсене вара каланă: «Шăмат кун ырă тумалла-и
е усал тумалла? Чуна çăлмалла-и е пĕтермелле?»
Пĕри те хирĕç чĕнмен. 5 Иисус, вĕсем хытă чунлă
пулнăран кулянса, вĕсене çилĕллĕн пăхса
çаврăннă та çав çынна каланă: «Аллуна тăс-ха».
Лешĕ тăснă та, алли тӳрленсе тепри пекех пулса
тăнă. 6 Фарисейсем вара унтан тухсан тӳрех Ирод
майлă çынсен ушкăнĕпе пĕрле Иисуса епле
вĕлерес-ши тесе Ăна хирĕç кавар тунă.

### Тинĕс хĕрринче

7 Иисус вара Хăйĕн вĕренекенĕсемпе тинĕс
хĕррине кайнă. Ун хыççăн Галилейăра, Иудейăра,
Иерусалимра, Идумейăра тата Иордан леш енче
пурăнакан темĕн чухлĕ халăх пынă. Иисусăн ĕçĕсем
пирки сăмах сарăлнăран унта Тирпа Сидон
таврашĕнчи çынсем те йышлăн пуçтарăннă. 9 Иисус
чылайăшне сыватнă. Ăна сĕртĕнесчĕ тесе
чирлисем Ун патне талпăннă. Хăй тавра халăх
кĕпĕрленсе тулнăран Иисус вĕренекенĕсене Хăй
валли кимĕ хатĕрлеме хушнă. 11 Иисуса курсан усал
сывлăшсем Ун умне ӳксе: «Эсĕ – Турă Ывăлĕ!» – тесе
кăшкăрнă. 12 Иисус вара вĕсене Хăй çинчен
пĕлтерме хыттăнах чарнă.

*Вун икĕ апостола суйласа илни*

(Мф. 10:1-4; Лк. 6:12-16)

13 Унтан Иисус ту çине улăхнă та Хăй чĕнес тенĕ
вĕренекенĕсене чĕннĕ; лешсем Ун патне пынă.
14 Вĕсенчен вун иккĕшне Иисус Хăйпе пĕрле
пулмашкăн, вĕрентме ямашкăн, чиртен
сыватмашкăн тата усалсене хăваласа кăлармашкăн
хăват илччĕр тесе суйласа лартнă. 16 Вăл çаксене
суйласа илнĕ: Симон – Иисус ăна Петр тесе ят панă;
17 Зеведей ывăлĕсем Иаковпа унăн шăллĕ Иоанн –
Иисус вĕсене Воанергес тесе ят панă, ку «аслати
ачисем» тени пулать; 18 Андрей, Филипп,
Варфоломей, Матфей, Фома, Алфей ывăлĕ Иаков,
Фаддей, Симон Кананит 19 тата Иуда Искариот. Çакă
вара Ăна сутаканни пулнă.

*Усалсене Иисус мĕнле хăватпа хăваласа кăларать?*

(Мф. 12:22-32; Лк. 11:14-23; 12:10)

20 Иисуспа вĕренекенĕсем пĕр çурта кĕнĕ. Каллех
халăх нумай пуçтарăннă пирки вĕсен апат çиме те
май пулман. 21 Иисусăн ăс-пуçĕ йĕркеллех мар
тенине илтсен тăванĕсем Ăна илме пынă. 22 Унăн
ăшĕнче – Веельзевул , Иисус усал сывлăшсене
усалсен пуçлăхĕн хăвачĕпе хăваласа кăларать тесе
калаçнă Иерусалимран пынă саккун вĕрентӳçисем
те. 23 Иисус вĕсене аяккарах чĕнсе илнĕ те ытарлăн
çапла каланă: «Епле-ха шуйттан шуйттана хăваласа
кăлартăр? 24 Хирĕçсе-пайланса кайсан патшалăх
тытăнса тăраймасть, 25 кил-йыш та хирĕçсе-
пайланса кайсан арканать. 26 Шуйттан та, хăйпе хăй
хирĕççен, пайланса кайсан, тытăнса тăраймасть;
унăн пĕтес вăхăчĕ çитнĕ пулать вара. 27 Вăйлă
çыннăн çуртне кĕрсен, малтанах вăйлăскерне çыхса
пăрахмасăр, никам та унăн япалисене çаратаймĕ,
çыхса пăрахсан тин унăн çуртне çаратайĕ. 28 Чăн
калатăп сире, этем ывăлĕсен кирек епле çылăхĕсем
те, кирек епле хурласа калаçнисем те каçарăнĕç.
29 Анчах та кам Святой Сывлăша хурлать, ăна
ĕмĕрне те каçару пулмĕ. Çав çын ĕмĕрлĕхех айăплă
пулма тивĕçлĕ». 30 Унăн ăшĕнче усал сывлăш
ларать тенĕрен Вăл çапла каланă пулнă.

*Иисус Христос Амăшĕпе тăванĕсем*

(Мф. 12:46-50; Лк. 8:19-21)

31 Иисусăн Амăшĕпе тăванĕсем Ун патне пынă та,
хăйсем пӳрте кĕмен, Ăна чĕнсе тухма ыйтнă.
32 Иисус тавра халăх ларнă. «Сана тулта Аннӳпе
тăванусем чĕнеççĕ», – тенĕ Ăна çавăн чухне. 33 «Кам
Манăн Аннем? Камсем Манăн тăванăмсем?» –
тавăрнă вĕсене Иисус. 34 Унтан, Хăй тавра
ларакансене пăхса çаврăнса, çапла каланă: «Акă
Манăн аннемпе тăванăмсем. 35 Мĕншĕн тесен кам
Турă ирĕкне пурнăçласа пурăнать, çав Манăн
тăванăм та, аннем те пулать».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăх*

(Мф. 13:1-9; Лк. 8:4-8)

4 Иисус каллех тинĕс хĕрринче вĕрентме
пуçланă. Ун патне темĕн чухлĕ халăх пухăннă,
çавăнпа Унăн кимĕ çине ларма тивнĕ. Вăл тинĕс
хĕрринчи кимĕ çинче пулнă, мĕн пур халăх вара
çыран хĕрринче тăнă. 2 Иисус вĕсене ытарлăн
каласа нумай вĕрентнĕ, вĕсене ӳкĕтлесе çапла
каланă: 3 «Ĕнтĕ итлĕр. Пĕр акаçă акана тухнă.
4 Хайхи акнă чухне хăш пĕрчисем çул хĕррине ӳкнĕ,
кайăксем вĕçсе пынă та çав пĕрчĕсене сăхса
пĕтернĕ. 5 Хăшĕ чуллă, сахал тăпраллă çĕре ӳкнĕ,
тăпри ăшăх пулнăран калча часах шăтса тухнă.
6 Анчах та хĕвел тухсанах ăна ĕнтсе янă, тымар
ярайман калча вара типсе ларнă. 7 Хăшĕ пиçенлĕ
вырăна ӳкнĕ, пиçен çитĕнсе кайнă та калчана пусса
лартнă, вара калча пучах кăларайман. 8 Хăшĕ тата
пулăхлă çĕр çине ӳкнĕ те шăтса тухса пучах
кăларнă: пĕр пĕрчĕрен вăтăр пĕрчĕ, тепри утмăл
пĕрчĕ, тата тепри çĕр пĕрчĕ пултарнă. 9 Илтме
хăлха пурри илттĕр!» – тенĕ Иисус вĕсене.

*Ытарлăн калани çинчен*

(Мф. 13:10-17; Лк. 8:9-10)

10 Халăх салансан, унта юлнă çынсем тата вун икĕ
вĕренекенĕ Унран ытарлăн калани çинчен ыйтнă.
11 Вара Иисус вĕсене çапла каланă: «Сире Турă
Патшалăхĕн вăрттăнлăхĕсене пĕлме тивĕç панă.
Ыттисене вара, тивĕçлĕ маррисене, Эпĕ йăлтах
ытарлăн калатăп, ĕнтĕ вĕсем куçĕпе пăхсан та
курмаççĕ, хăлхипе илтсен те ăнланмаççĕ, çавăнпа
та, çылăхĕсене каçарттарас тесе, Турă енне
çаврăнмаççĕ».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăха ăнлантарни*

(Мф. 13:18-23; Лк. 8:11-15)

13 «Çак ытарлăха та ăнланмастăр-и? – тенĕ вĕсене
Иисус. – Ыттисене вара епле ăнланса илĕр? 14 Акаçă
Турă сăмахĕ акать. 15 Çул хĕррине ӳкни çакна
пĕлтерет: хăш-пĕрисем вĕрентнĕ сăмаха итлеççĕ,
анчах та илтсенех вĕсем патне шуйттан пырать те

вĕсен чун-чĕрине акнине вăрласа каять.
16 Ҫавнашкалах чуллă ҫĕре ӳкни те Турă сăмахне
илтсе ăна тӳрех хавасланса йышăнакансене
пĕлтерет, 17 анчах та вĕсем питĕ иккĕленчĕк, чун-
чĕрисем тымарсăр. Каярахпа, сăмахшăн хĕн
кăтартма е хĕсĕрлеме тытăнсан, вĕсем тӳрех
ĕненӳрен пăрăнаççĕ. 18 Пиçенлĕ вырăна ӳкни те
Турă сăмахне илтекен ҫынсенех пĕлтерет, 19 анчах
та ку тĕнчери хĕвĕшӳ, пуянлăх илĕртĕвĕпе ытти
илĕртӳсем вĕсен чунне тулса сăмаха пусса лартаççĕ
те, сăмах вара тĕшĕсĕр пулать. 20 Пулăхлă ҫĕр ҫине
ӳкни Турă сăмахне илтсе ҫав сăмаха хапăл
тăвакансене пĕлтерет, вĕсен чĕринчи сăмах тĕшĕ
кăларать. Ҫапла вара, пĕринчен вăтăр пĕрчĕ,
тепринчен утмăл пĕрчĕ, тата тепринчен ҫĕр пĕрчĕ
пулать».

*Ҫутаткăçпа виçе ҫинчен каланă ытарлăх*
(Лк. 8:16-18)

21 Унтан Иисус вĕсене ҫапла каланă: «Ҫутаткăça
чӳлмекпе хуплама е кравать айне лартма илсе
пыраççĕ-им? Ăна ҫутаткăç лартмалли ҫине
вырнаçтармаççĕ-им? 22 Вăрттăнни те паллă пулатех,
пытарса хăварни те ҫиеле тухатех. 23 Илтме хăлха
пурри илттĕр!»
24 Тата вĕсене каланă: «Ман сăмахăма тимлĕн
итлĕр. Мĕнле виçепе виçетĕр, хăвăра та ҫав
виçепех виçсе парĕç. Сире, сăмахăма итлекенсене,
ытларах та хушса парĕç. 25 Камăн пур, ăна татах
парĕç. Камăн ҫук, унăнне пур пеккине те туртса
илĕç».

**Вăрлăх ҫинчен каланă ытарлăх**

26 «Турă Патшалăхĕ ҫакăн евĕрлĕ, – тенĕ тата
Иисус. – Ҫын ҫĕре вăрлăх акать. 27 Кайран вăл
каçсерен ҫывăрать, ирсерен тăрать. Ҫав хушăра
вăрлăх шăтса ӳсет, хайхи ҫын ку епле пулнине те
пĕлмест. 28 Ҫĕр хăй тĕллĕнех ҫимĕç парать: малтан
калча ӳстерет, унтан пучах кăларттарать, кайран
пучаха тултарать. 29 Пулса ҫитнĕ пучах часрах ҫурла
тыттарать, мĕншĕн тесен вырма вăхăчĕ ҫитнĕ».

*Сарă пăрăç вăрри ҫинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 13:31-32; Лк. 13:18-19)

30 «Турă Патшалăхне тата мĕнпе танлаштарар-ши?
Ăна мĕнле ытарлăхпа сăнарлама май пур-ши? –
тенĕ Иисус. 31 – Вăл – сарă пăрăç вăрри евĕрлĕ теме
пулать. Акнă чухне ҫав пĕрчĕ ҫĕр ҫинчи
вăрăсенчен чи пĕчĕкки. 32 Аксассăн шăтса тухать те
мĕн пур пахча ҫимĕçсенчен те ҫӳллĕ пулать. Унăн
парка турачĕсен сулхăнĕнче вара вĕçен кайăксем
те йăва ҫавăрма пултараççĕ». 33 Ҫынсем тавçăрса
илме пултарнă таран Иисус вĕсене Турă сăмахне
ҫакнашкал нумай ытарлăхпа вĕрентнĕ. 34 Ҫынсемпе
Вăл ытарлă кăна калаçнă, вĕренекенĕсене вара
куçа-куçăн чухне пĕтĕмпех ăнлантарса панă.

*Ҫил-тăвăла чарни*
(Мф. 8:23-27; Лк. 8:22-25)

35 Каç пулса килнĕ чухне Иисус вĕренекенĕсене
каланă: «Тинĕс тепĕр енне каçар-ха». 36 Вара
вĕренекенĕсем, халăхпа сывпуллашсан, Иисуса
ларнă киммипех хăйсемпе пĕрле илсе кайнă. Унтах
ытти кимĕсем те пулнă. 37 Ҫавăн чухне вăйлă ҫил-
тăвăл тухнă, вара хум ҫапнипе кимме шыв тула
пуçланă. 38 Иисус киммĕн хыçалти пайĕнче пуçелĕк
хурсах ҫывăрнă пулнă. Ăна вăратса ҫапла каланă:
«Вĕрентекен! Эпир пĕтсен те Сана пурпĕрех-им?»
39 Иисус тăнă та ҫиле чарăнма хушнă, тинĕсе:
«Чарăн, ан шавла», – тенĕ. Вара ҫил лăпланнă та,
ҫанталăк шăпах пулнă. 40 «Мĕншĕн эсир ҫав тери
хăравçă? Нивушлĕ сирĕн ĕненĕвĕр ҫук?» – тенĕ
Иисус вĕсене. 41 Питĕ хăраса кайнипе вĕсем пĕр-
пĕрне ҫапла каланă: «Кам-ши Ку? Ăна ҫил те, тинĕс
те пăхăнать».

*Усал ернĕ ҫынна сыватни*
(Мф. 8:28-34; Лк. 8:26-39)

5 Иисуспа вĕренекенĕсем тинĕс леш енчи
Гадара ҫĕрне ҫитсе чарăннă. 2 Иисус кимĕ
ҫинчен ансанах Ăна ҫĕр хăвăлĕнчи тупăклăхран
тухнă усал ернĕ пĕр ҫын тĕл пулнă. 3 Вăл ҫĕр
хăвăлĕнчи тупăклăхсенче пурăннă, ăна никам та
сăнчăрласа та чарайман. 4 Ҫынсем темиçе хут та
унăн алли-урине сăнчăрласа-тимĕрлесе пăхнă,
анчах вăл сăнчăрĕсене тата-тата пăрахнă,
тимĕрĕсене ватнă. Ăна никам та лăплантарма
пултарайман. 5 Ҫав ҫын яланах, кунĕн-ҫĕрĕн
сăртсем ҫинче тата ҫĕр хăвăлĕсенчи тупăклăхра
кăшкăрашса, хăйне-хăй чулпа ҫапса сусăрлатса
ҫӳренĕ. 6 Вăл, Иисуса инçетренех асăрхаса, Ун
патне чупса пынă та чĕркуçленсех пуççапнă. 7 «Эй,
Ҫӳлти Турă Ывăлĕ Иисус! – тесе хыттăн кăшкăрнă
вăл. – Санăн манпа мĕн ĕç пур? Турă ячĕпе Сана
тархаслатăп, ан асаплантар мана». 8 Мĕншĕн тесен
Иисус ăна: «Усал сывлăш, тух ҫак ҫын ăшĕнчен», –
тенĕ пулнă. 9 «Эсĕ мĕн ятлă?» – тесе ыйтнă унран
Иисус. «Эпир нумаййăн, ҫавăнпа та эпĕ „пулккипех“
ятлă», – тенĕ Ăна лешĕ. 10 Унтан хăйсене ҫав
тăрăхран хăваласа ан ятăр тесе вĕсем Иисуса
йăлăнсах тархасланă. 11 Ҫавăнтах, ту патĕнче, пĕр
пысăк сысна кĕтĕвĕ ҫӳренĕ. 12 Усалсем пурте
Иисуса: «Пире ҫав сыснасен ăшне кĕме ярсам», –
тесе йăлăннă. 13 Иисус ҫавăнтах вĕсене ирĕк панă.
Вара усал сывлăшсем, тухса, сыснасем ăшне кĕнĕ.
Унтан сысна кĕтĕвĕ чăнкă ҫырантан тинĕсе сикнĕ,
пурте путса вилнĕ. Кĕтӳре икĕ пине яхăн сысна
пулнă. 14 Сысна пăхакансем вара хуланалла чупнă
та ҫавăн ҫинчен хулара тата таврари ялсенче кала-
кала кăтартнă. Халăх мĕн пулнине курма тухнă.
15 Хайхисем Иисус патне пынă та акă мĕн курнă: ҫав
ҫын, пулккипе усал ернĕскер, тумланса ларнă та
чипер ăс-тăнпах ларать. Ҫакна курсан вĕсем
хăрасах кайнă. 16 Куçăн курнисем вĕсене усал ернĕ
ҫынпа мĕн пулса иртнине те, сыснасем ҫинчен те
каласа кăтартнă. 17 Вара халăх Иисуса хăйсен ҫĕрĕ-
шывĕнчен кайма тархасла пуçланă. 18 Иисус кимĕ
ҫине ларнă чухне хайхи усал ернипе асапланнă
ҫын хăйне те пĕрле илме йăлăннă. 19 Анчах та Иисус
ăна пĕрле илмен. «Эсĕ киле кай та Хуçа Турă

хăвăншăн мĕн тунине, епле хĕрхеннине
тăванусене каласа кăтарт», – тесе кăна хусса
хăварнă. 20 Унтан çав çын Вунхула çĕрне кайнă та
Иисус ăна мĕн туни çинчен каласа çӳреме пуçланă.
Вара пурте тĕлĕннĕ.

*Иаир хĕрне чĕртни тата юн каякан хĕрарăма сыватни*

(Мф. 9:18-26; Лк. 8:40-56)

21 Иисус тинĕс леш енчен кимĕпе каялла
тавăрăннă. Хăй патне халăх йышлă пухăннăран Вăл
пĕр вăхăт тинĕс хĕрринчех пулнă. 22 Çавăнта
синагога пуçлăхĕсенчен пĕри, Иаир ятлăскер,
пынă. Иисуса курсанах, Ун ури умне ӳксе, вăл питĕ
хытă тархасла пуçланă: «Хĕрĕм вилесле выртать,
пырсамччĕ, сывалса чĕрĕ юлтăр тесе ун çине
аллуна хурсамччĕ». 24 Вара Иисус унпа пĕрле кайнă.
Ун хыççăн халăх йышлăн кĕпĕрленсе пынă.
25 Çавăнта юн кайнипе вун икĕ çул асапланакан пĕр
хĕрарăм пулнă. 26 Вăл тĕрлĕ тухтăрсем патне çӳресе
нумай нуша курнă, пĕтĕм укçи-тенкине пĕтернĕ,
анчах ним усси те пулман, унăн сывлăхĕ пушшех
япăхланса пынă. 27 Çав хĕрарăм Иисус çинчен илтсе
пĕлнĕ. «Унăн тумтирне те пулин сĕртĕнсен
сывалăттăм», – тесе шухăшланă вăл. Вара
хайхискер халăх хушшипе хыçалтан пынă та Унăн
тумтирне сĕртĕннĕ. 29 Çавăнтах хĕрарăмăн юн
кайма пăрахнă, чир-чĕртен сывалнине вăл пĕтĕм
ӳт-пĕвĕпе туйса илнĕ. 30 Иисус, Хăйĕнчен хăват
тухнине чунĕпе çав самантрах сиссе, халăха пăхса
çавăрăннă та: «Тумтирĕме кам сĕртĕнчĕ?» – тенĕ.
31 Вара вĕренекенĕсем Ăна çапла каланă: «Хăвăн
тавра халăх кĕпĕрленнине курса тăнă çĕртех епле-
ха Эсĕ: „Тумтирĕме кам сĕртĕнчĕ?" – тетĕн». 32 Анчах
та Иисус, Хăйне кам сĕртĕннине курас тесе,
çаплипех йĕри-тавралла пăхкаланă. 33 Хăранипе
чĕтреме ернĕ хĕрарăм вара, хăйпе мĕн пулса
иртнине пĕлекенскер, Иисус патне пынă та Ун умне
ӳксе тĕрĕссине каласа панă. 34 «Хĕрĕм! Ĕненĕвӳ
çăлчĕ сана. Канăçлă каях, чирӳнтен сывал!» – тенĕ
вара ăна Иисус.
35 Иисус çак сăмахсене каланă вăхăтрах синагога
пуçлăхĕн килĕнчен пынă та çапла каланă: «Хĕрӳ
вилсе кайрĕ ĕнтĕ. Вĕрентекене мĕншĕн
чăрмантаратăн тата?» 36 Анчах та Иисус, çак
сăмахсене илтсенех, синагога пуçлăхне: «Ан хăра,
ĕнен кăна», – тенĕ. 37 Вара Вăл Петрпа Иаковсăр
пуçне, Иаков шăллĕ Иоансăр пуçне Хăй хыççăн
никама та пыма хушман. 38 Иисус синагога
пуçлăхĕн килне çитнĕ те аптăраса кайнă çынсене
курнă, хӳхлесе хыттăн йĕнине илтнĕ. 39 «Мĕншĕн
каплах кулянса йĕретĕр? – тенĕ Вăл пӳрте кĕрсенех.
– Хĕр ача вилмен, çывăрать кăна». 40 Çынсем
Иисусран кулма пуçланă. Анчах та Вăл ыттисене
пӳртрен тухма хушнă та хĕрĕн ашшĕ-амăшĕпе тата
Хăйпе пулнисемпе пĕрле хĕр ача выртакан пӳлĕме
кĕнĕ. 41 Унтан хĕр ачана аллинчен тытнă та:
«Талифа куми!» – тенĕ. Ку: «Хĕрĕм, сана калатăп,
тăр!» – тенине пĕлтерет. 42 Хĕр ача – вăл ĕнтĕ вун
икĕ çулсенче пулнă – вара тӳрех тăнă та утма
пуçланă. Çакна курсан пурте тĕлĕнмеллипех
тĕлĕннĕ. 43 Çак ĕç пирки никам та ан пĕлтĕр тесе
Иисус вĕсене çирĕппĕн каласах чарнă. Вара хĕре
çимелли пама хушнă.

*Назарет çыннисем Иисуса ĕненменни*

(Мф. 13:53-58; Лк. 4:16-30)

6 Унтан Иисус çав вырăнтан Хăй ӳснĕ хулана
тавăрăннă. Унпа пĕрле вĕренекенĕсем те
пынă. 2 Шăмат кун çитсен Вăл синагогăра вĕрентме
пуçланă. Итлекенсенчен чылайăшĕ тĕлĕннипе
çапла каланă: «Кунашкал пĕлӳ ăçтан тухать-ха
Унăн? Мĕнлескер-ши вăл, Ăна панă ăслăлăх?
Çавнашкал хăватсене тума епле пултарать-ши Вăл?
3 Платник çеç мар-им вара Вăл? Вăл Мария ывăлĕ,
Иаковпа Иосийăн, Иудăпа Симонăн тăванĕ кăна-иç!
Унăн аппăшĕсем те кунтах, хамăр хушшăмăртах
мар-им вара?» Çапла вĕсем Унăн сăмахĕсене
ĕненесшĕн пулман. 4 Иисус вара вĕсене каланă:
«Хисеплемен пророк пулмасть, хисеп тумасан та
ăна тăван çĕр-шывĕнче тата тăван халăхĕ
хушшинче, хăй килĕнче кăна хисеп тумаççĕ». 5 Вăл
унта нимĕнле хăват та кăтартман, хăш-пĕр чирлĕ
çынсене кăна аллине хурса сыватнă. 6 Вĕсен
ĕненменлĕхĕнчен Иисус питĕ тĕлĕннĕ. Унтан вара
таврари ялсенче вĕрентсе çӳренĕ.

*Иисус вун икĕ апостолне вĕрентсе çӳреме ярать*

(Мф. 10:1, 5-15; Лк. 9:1-6)

7 Иисус Вун иккĕшне чĕнсе илнĕ. Вара вĕсене,
усал сывлăшсене пăхăнтарма хăват парса,
икшерĕн-икшерĕн вĕрентме янă. 8 Иисус вĕсене
çул çине туясăр пуçне нимĕн те: хутаç та, çăкăр та,
вак укçа та – илме хушман, 9 чаплă пушмак тăхăнма
та, тепĕр кĕпе илме те каламан. 10 «Сире хăш çуртра
хапăл туса йышăнаççĕ, çав çуртра вăл вырăнтан
кайма вăхăтăр çитиччен пурăнăр, – тенĕ Иисус
вĕсене. – Кам та пулин сире хапăл тумасан,
сăмахăра та итлемесен, унтан тухса кайнă чухне
эсир, вĕсене асăрхаттарнине пĕлтерсе, пушмак
çумĕнчи тусана та силлесех хăварăр. Чăн калатăп
сире: суд кунĕнче Содомпа Гоморра хулисене çав
хуларан çăмăлтарах пулĕ ». 12 Вĕсем вара кайнă та
çылăхран ӳкĕнме вĕрентсе çӳренĕ; 13 нумай-нумай
усал сывлăш хăваласа кăларнă, чылай чирлĕ çынна
çу сĕрсе сыватнă.

*Шыва кĕртекен Иоанн вилĕмĕ*

(Мф. 14:1-12; Лк. 9:7-9)

14 Çав вăхăтра Иисус ячĕ тавраллах сарăлнă. Ирод
патша Ун çинчен илтсен çапла каланă: «Ку –
вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Шыва кĕртекен Иоанн,
çавăнпа вăл хăватсем кăтартать те». 15 Хăшĕсем
тата: «Вăл Илия пророк», – тенĕ. «Вăл авалхи
пророксем евĕрлĕ пророк», – тенĕ тата теприсем.
16 Ирод вара, çакнашкал калаçусене илтсен: «Ку çын
– эпĕ пуçне кастарнă Шыва кĕртекен Иоанн, вăл
вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă», – тенĕ. 17 Ирод хăйĕн
пиччĕшĕн Филипăн арăмне, Иродиадăна, качча
илнĕ пулнă. Çав хĕрарăма пула вăл Иоана тыттарса
тĕрмене хупса лартнă пулнă. Мĕншĕн тесен Иоанн

ăна: «Санăн инкӳпе пурăнма юрамасть», – тесе
ӳпкеленĕ. 19 Иродиада вара, Иоана çилленсе, ăна
вĕлерттересшĕн пулнă, анчах пултарайман,
20 мĕншĕн тесен Ирод Иоанран хăранă. Иоанн тӳрĕ,
сăваплă çын иккенне пĕлсе Ирод ăна кӳрентерме
паман, хăйĕн ĕçĕсене те нумайăшне Иоанн каланă
пек тунă, унăн сăмахĕсене кăмăлласах итленĕ.
21 Иродиадăн кĕтнĕ кунĕ аранах çитнĕ. Ирод хăйĕн
çуралнă кунне уявлама улпут таврашĕсене,
пинпӳсене тата Галилейăри ятлă-сумлă çынсене
чĕнсе ĕçкĕ-çикĕ тунă. 22 Çавăн чухне Иродиада хĕрĕ
кĕнĕ те хăнасене ташласа савăнтарнă. Унăн ташши
Иродпа хăнисене питĕ килĕшсе кайнă. Ирод вара
хĕре: «Манран мĕн ыйтассу килет, çавна ыйт. Эпĕ
сана кирек мĕн ыйтсан та парăп, çур патшалăхăма
та пама хатĕр», – тесе тупа тунă. 24 Хĕр амăшĕ патне
тухнă та: «Мĕн ыйтам-ши?» – тенĕ. «Шыва кĕртекен
Иоанн пуçне ыйт», – тенĕ амăшĕ. 25 Хĕрĕ çавăнтах
патша патне васкаса кĕнĕ. «Шыва кĕртекен Иоанн
пуçне тирĕк çине хурса халех илсе килсе пар мана»,
– тенĕ вăл. 26 Патша салхуланнă, анчах хăнисем
умĕнче тупа тунăран мĕн ыйтнине пама пулнă.
27 Вара патша çав самантрах, Иоанн пуçне илсе
килме хушса, пĕр салтакне тĕрмене янă. 28 Салтакĕ
тĕрмене кайнă та Иоанн пуçне касса, тирĕк çине
хурса хĕр патне илсе пынă, лешĕ вара ăна амăшне
панă. 29 Çавна илтсен Иоанн вĕренекенĕсем пынă
та унăн ӳтне тупăклăха илсе кайса пытарнă.

*Пилĕк пин çынна тăрантарни*

(Мф. 14:13-21; Лк. 9:10-17; Ин. 6:1-14)

30 Апостолсем Иисус патĕнче пуçтарăннă, хăйсем
мĕн-мĕн тунине, мĕн-мĕн вĕрентнине йăлтах
каласа панă. 31 Килен-каян йышлă пулнăран вĕсен
апат çиме те май пулман, çавăнпа Иисус вĕсене
çапла каланă: «Халĕ хамăр кăна çын çук вырăна
каяр та кăштах канар». 32 Вара вĕсем пĕр хăйсем
кăна кимĕпе çын çук вырăна ишсе кайнă. 33 Çапах
та вĕсем ишсе кайнине çынсем асăрханă,
чылайăшĕ вĕсене палласа илнĕ. Тĕрлĕ хуласенчен
тухнă халăх, васкаса, çав вырăна маларах çитнĕ те
Иисус патне пухăннă. 34 Çыран хĕррине тухсан
Иисус унта çынсем нумай пулнине курнă. Вăл
çынсене хĕрхеннĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кĕтӳçĕсĕр
сурăхсем пекех пулнă. Вара Иисус вĕсене чылай
вĕрентнĕ. 35 Каç пулса килнĕрен вĕренекенĕсем
Иисус патне пырса çапла каланă: «Кунта çын
пурăнман вырăн, ĕнтĕ каç та пулса килет. 36 Эсĕ
çынсене таврари ялсене кайса хăйсем валли çăкăр
туянмашкăн ярсамччĕ, вĕсен çиме çук».
37 «Çимелли вĕсене эсир хăвăр парăр», – тавăрнă
Иисус. «Вĕсене çитерме пĕр ик çĕр динарийлĕх
çăкăр кирлĕ. Кайса туянмалла-и вара пирĕн?» –
тенĕ Ăна. 38 «Кайса пăхăр-ха, сирĕн миçе çăкăр
пур?» – тенĕ Иисус вĕсене. «Пилĕк çăкăрпа икĕ
пулă», – тенĕ лешсем кайса пĕлнĕ хыççăн. 39 Вара
Иисус халăха ушкăнăн-ушкăнăн çерем çине лартма
хушнă. 40 Çынсем ушкăнăн-ушкăнăн çĕршерĕн,
аллăшарăн ларса тухнă. 41 Унтан Иисус пилĕк
çăкăрпа икĕ пулла илсе çӳлелле пăхнă та Турра тав
тунă. Çăкăрсене Вăл халăха валеçмешкĕн
вĕренекенĕсене хуçа-хуçа панă; икĕ пуллине те
çавнашкалах валеçнĕ. 42 Пурте çисе тăраннă.
43 Унтан юлнă çăкăр татăкĕсене, пулă татăкĕсене
тата вун икĕ кунтăк туллиех пухнă. 44 Çиекенсенчен
арçынсем кăна пилĕк пине яхăн пулнă.

*Иисус шыв çийĕпе утни*

(Мф. 14:22-33; Ин. 6:15-21)

45 Çавăн хыççăнах Иисус вĕренекенĕсене кимĕ
çине ларма, Хăйĕнчен маларах тепĕр енне,
Вифсаидăналла, кимĕпе ишсе каçма хушнă. Хăй
халăха ăсатма юлнă. 46 Халăхпа сывпуллашсан
Иисус ту çине кĕлтума кайнă. 47 Каçхине кимĕ тинĕс
варрипе ишсе пынă, Иисус вара пĕчченех çыран
хĕрринче пулнă. 48 Вăл вĕренекенĕсем кĕсменпе
вăйран кайса çиле хирĕç ишнине курнă. Тул
çутăласпа вара, тинĕс çийĕпе утса, Иисус вĕсем
патне пынă, иртсе каясшăн та пулнă. 49 Вăл тинĕс
çийĕпе утса пынине курсан вĕренекенĕсем, куçа
мĕлке курăнать пулĕ тесе, хăранипе кăшкăрсах янă.
50 Вăл пурин куçне те курăннăран вĕсен сехри
хăпнă та. Иисус вара çав самантрах сасă парса:
«Хастар пулăр! Ку – Эпĕ, ан хăрăр!» – тенĕ. 51 Вăл
вĕсен кимми çине ларсанах çил чарăннă.
Вĕренекенĕсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. 52 Мĕншĕн
тесен чунĕсем усăлса çитеймен пирки вĕсем
çăкăрпа тунă хăвата та ăнланса илеймен пулнă-ха.

*Геннисаретра чирлисене сыватни*

(Мф. 14:34-36)

53 Тинĕс урлă ишсе каçсан вĕсем Геннисарет çĕрне
çитнĕ те çыран хĕррине пырса чарăннă. 54 Кимĕ
çинчен ансанах унти çынсем Иисуса палласа илнĕ
те йĕри-таврах Ун çинчен пĕлтерсе çӳренĕ. Вара
чирлисене вырăнĕ-мĕнĕпех Иисус çавăнта тенĕ
çĕре илсе пыра пуçланă. 56 Яла-и, хулана-и – Иисус
кирек ăçта пырсан та – пур çĕрте те çынсем
чирлисене усă лаптăка илсе тухса вырттарнă. Вара
Иисусран тумтир аркине те пулин сĕртĕнтерме
йăлăннă. Ăна сĕртĕнекенсем пурте сывалнă.

*Ваттисен йăли-йĕркине тытса пырасси çинчен*

(Мф. 15:1-20)

7 Пĕррехинче Иисус патне фарисейсем тата
Иерусалимран пынă темиçе саккун вĕрентӳçи
пухăннă. 2 Вĕсем Иисусăн хăш-пĕр вĕренекенĕсем
çуман, таса мар аллăпах çăкăр çинине асăрханă та
вĕсене ӳпкеленĕ. 3 Кунта çакна каламалла:
фарисейсем, пур иудейсем пекех, ваттисен йăлипе
аллисене тĕплĕн çумасăр çимеççĕ. 4 Çавнашкалах
пасартан тавăрăнсан та çăвăнас йăлана туса
ирттермелле, вара тин çимелле. Вĕсен тата ытти
нумай йăласене те тытса пымалла: савăт-сапана та,
сак-тенкеле те йĕркене пăхăнса çумалла. 5 Унтан
фарисейсемпе саккун вĕрентӳçисем Иисусран
ыйтнă: «Мĕншĕн Санăн вĕренекенӳсем ваттисен
йăлине пăхăнмаççĕ, çиес умĕн аллисене çумаççĕ?»
6 Иисус вĕсене çапла хуравланă: «Сирĕн çинчен,
икĕ питлĕскерсем çинчен, Исаия пророк Турă
сăмахĕсемпе аван çырса хăварнă: „Çак çынсем

чĕлхи-çăварĕпе Мана хисеплеççĕ, анчах чун-
чĕрипе Манран питĕ аякра. 7 Вĕсем этем
шухăшласа кăларнă вĕрентĕве, йăла-йĕркене
вĕрентеççĕ пулсан, вĕсем Мана пуççапни усăсăр“.
8 Эсир те Турă хушнине пăрахăçласа этем
шухăшласа кăларнă йăласене çеç – савăт-сапа
çăвассине тата çавăн евĕрлĕ ытти тем те пĕре –
тытса пыратăр». 9 Иисус татах çапла каланă: «Эсир
хăвăр йăлăра тытса пырас тесе Турă хушнине
пăрахăçлани лайăх-им? 10 Моисей çапла каланă
пулнă-çке-ха: „Аçу-аннӳне хисепле“ тата „Ашшĕне е
амăшне усал сăмах калакана вилĕм çиттĕр“. 11 Эсир
вара мĕне вĕрентетĕр? „Çын хăй ашшĕне е амăшне
парассине „корван“ (Турă валлилĕх) тесе уйăрса
хума пултарать“, – тетĕр эсир. 12 Капла вĕренти вăл
çынна аçушăн е аннӳшĕн нимĕн тумасан та юрать
тениех-çке. 13 Çавнашкал япаласем эсир урăх та
нумай тăватăр. Çапла майпа эсир хăвăр кăларнă
йăла-йĕркешĕн Турă сăмахне пăрахăçлатăр».
14 Унтан Иисус халăха чĕнсе çапла каланă: «Пурте
Мана итлĕр те ăнланса илĕр. 15 Çынна тулашран
кĕрекенни нимĕн те ирсĕрлетме пултараймасть,
ăшран тухаканни ирсĕрлетет. 16 Илтме хăлха пурри
илттĕр! » 17 Иисус халăхран уйăрăлса пӳрте кĕрсен
вĕренекенĕсем Унран çак ытарлăх мĕне
пĕлтернине ыйтнă. 18 Иисус вĕсене çапла каланă:
«Эсир те çав териех ăнланусăр-и? Тулашран
кĕрекенни нимĕн те çынна ирсĕрлетме
пултарайманнине те ăнланмастăр-и? 19 Тулашран
кĕрекенни çын чун-чĕрине мар, вар-хырăмне кĕрет
те тулашах тухать». (Çапла майпа Иисус мĕн пур
апат-çимĕç таса пулнине пĕлтернĕ.) 20 «Ăшран
тухаканни вара çынна Турă умĕнче ирсĕрлетет, –
тенĕ Вăл малалла. 21 – Мĕншĕн тесен усал
шухăшсем пурте: мăшăра улталасси, аскăнланасси,
çын вĕлересси, вăрласси, çăткăнланасси,
хаярланасси, улталасси, чарак çукки, кĕвĕçесси,
Турра хурласси, мăнкăмăлланасси, ăссăрланасси –
çын ăшĕнчен, чун-чĕринчен тухаççĕ. 23 Çак пĕтĕм
усаллăх ăшран тухать, çынна Турă умĕнче
ирсĕрлетет».

*Сирофиники хĕрарăмĕн хĕрне сыватни*

(Мф. 15:21-28)

24 Унтан кайсан Иисус Тирпа Сидон çĕрне пынă та
пĕр çуртра чарăнса тăнă. Вăл Хăй унтине никама та
пĕлтересшĕн пулман, анчах çынсем пурпĕрех
пĕлнĕ. 25 Хĕрне усал ернĕ пĕр хĕрарăм Иисус килни
çинчен илтнĕ те, пырса, Ун ури умне ӳксе пуççапнă,
26 хĕрĕ ăшĕнчи усала хăваласа кăларма тархасланă.
Вăл хăй урăх халăх хĕрарăмĕ, Сирофиники çынни
пулнă. 27 Анчах та Иисус ăна çапла каланă: «Малтан
ачасене тăрантармалла, мĕншĕн тесен ачасем çиес
çăкăра йытăсене пăрахса пани аван мар». 28 «Çапли
çапла та-ха, Хуçамăр, – тавăрнă Ăна хĕрарăм, –
анчах йытăсем те ача-пăча сĕтел айне ӳкернĕ
тĕпренчĕксене çиеççĕ-çке». 29 «Сăмаху тĕрĕс пулчĕ,
– тенĕ ăна Иисус, – халĕ каях, хĕрӳ ăшĕнчи усал
тухрĕ!» 30 Киле пырсан çак хĕрарăм хăйĕн хĕрĕ
вырăн çинче выртнине курнă. Ун ăшĕнчи усал
тухнă иккен.

### Хăлхасăр, селĕп çынна сыватни

31 Иисус Тирпа Сидон çĕрĕнчен Вунхула çĕрĕ
витĕр каллех Галилея тинĕсĕ хĕррине тухнă.
32 Çавăнта Иисус патне хăлхасăр, селĕп çынна илсе
пынă та Ăна çав çын çине аллине хума тархасланă.
33 Иисус ăна халăхран уйăрнă та, куçа-куçăн юлсан,
Хăйĕн пӳрнисене унăн хăлхи шăтăкĕсене чикнĕ.
Унтан Вăл сурнă та унăн чĕлхине сĕртĕннĕ. 34 Вара
тӳпенелле пăхса ассăн сывласа янă та çав çынна:
«Еффафа», – тенĕ (ку вăл «уçăл» тени пулать). 35 Çав
самантрах унăн хăлхи уçăлнă, чĕлхи çыхланни те
иртсе кайнă, вăл чип-чиперех калаçа пуçланă.
36 Иисус çынсене çак ĕç пирки никама та калама
хушман. Анчах чарнăçемĕн вĕсем ытларах та
ытларах калаçса çӳренĕ. 37 «Вăл мĕн туни пĕтĕмпех
вырăна килет, – тенĕ вĕсем тĕлĕнмеллипех
тĕлĕнсе, – хăлхасăррисем те илтме тытăнаççĕ,
чĕлхесĕррисем те калаçма пуçлаççĕ».

*Тăватă пин çынна тăрантарни*

(Мф. 15:32-39)

8 Çав кунсенче пĕрре Иисус патне питĕ нумай
халăх пухăннă. Çимелли вĕсен нимĕн те
пулман. Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене чĕнсе илсе
çапла каланă: 2 «Çак халăха Эпĕ шеллетĕп: çынсем
ĕнтĕ виçĕ кун хушши Манпа пĕрле, çиме вĕсен
нимĕн те çук. 3 Килĕсене выçах ярсан, вĕсем çул
çинче халран кайĕç, мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕри питĕ
инçетрен килнĕ». 4 «Кунта, çын пурăнман вырăнта,
вĕсене тăраниччен çитермелĕх кам ăçтан çăкăр
тупма пултарĕ?» – тавăрнă Ăна вĕренекенĕсем.
5 «Сирĕн миçе çăкăр пур?» – ыйтнă вĕсенчен Иисус.
«Çиччĕ», – тенĕ вĕсем. 6 Вара Иисус халăха çерем
çине ларма хушнă. Унтан çав çичĕ çăкăра илсе
Турра тав тунă та халăха валеçме вĕренекенĕсене
хуçа-хуçа панă, лешсем вара валеçнĕ. 7 Тата вĕсен
кăштах вĕтĕ пулă пулнă. Турра тав тунă хыççăн
Иисус пуллине те халăха валеçме хушнă. 8 Пурте
çисе тăраннă. Юлнă татăкĕсене тата çичĕ
карçинкка пухнă. 9 Çиекеннисем тăватă пине яхăн
пулнă. Халăхпа сывпуллашсанах Вăл
вĕренекенĕсемпе кимĕ çине ларса Далмануфа
çĕрне ишсе кайнă.

*Тӳперен хăват кăтартма ыйтни*

(Мф. 16:1-4)

11 Унта фарисейсем пынă та Иисуспа тавлашма
пуçланă. Вĕсем, Ăна илĕртсе тĕрĕслес тесе, тӳперен
хăват кăтартма хистесех ыйтнă. 12 Вара Вăл ассăн
сывласа янă та çапла каланă: «Çак ăру мĕншĕн-ха
хăват кăтартма хистесех ыйтать? Чăн калатăп сире:
ăна нимĕнле хăват та пулмĕ». 13 Вĕсенчен
уйăрăлсан Иисус каллех кимĕпе тинĕс тепĕр енне
кайма тухнă.

*Фарисейсен кăвас тĕпĕ çинчен*
(Мф. 16:5-12)

14 Вĕренекенĕсем хăйсемпе пĕрле çăкăр илме
маннă, кимĕ çинче вĕсен пурĕ те пĕр çăкăр анчах
пулнă. 15 Иисус вĕсене хытарсах каланă:
«Асăрханăр, фарисейсен кăвас тĕпĕнчен, Иродăн
кăвас тĕпĕнчен сыхланăр». 16 «Вăл пирĕн çăкăр
çуккишĕн çапла калать ĕнтĕ», – тенĕ вĕсем пĕр-
пĕрин хушшинче. 17 Вара Иисус вĕсем мĕн çинчен
калаçнине пĕлсе çапла каланă: «Мĕншĕн эсир
хăвăрăн çăкăр çукки пирки калаçатăр? Халичченех
ăнкарса, ăнланса илейместĕр-и? Халичченех ăс-
тăнăрсем усăлса çитеймерĕç-и? 18 Куçлă пулин те –
курмастăр-им? Хăлхаллă пулин те – илтместĕр-им?
Çакна астумастăр-им: 19 Эпĕ пилĕк çăкăра пилĕк
пин çынна хуçа-хуçа парсан, юлашки юлнă
татăкĕсене миçе кунтăк туллиех пухрăр-ха эсир?»
«Вун иккĕ», – тавăраççĕ Ăна. 20 «Тата çичĕ çăкăра
тăватă пин çынна валеçсе парсан, юлнă татăкĕсене
миçе карçинкка тултартăр-ха?» «Çиччĕ», – теççĕ
лешсем. 21 «Эппин мĕншĕн-ха халиччченех
ăнланмастăр?» – тенĕ вара Иисус.

### Вифсаидăра суккăра сыватни

22 Пĕррехинче, вĕсем Вифсаида витĕр тухнă
чухне, Ун патне суккăра çавăтса пынă та Иисуса ăна
сĕртĕнме йăлăннă. 23 Иисус çав суккăр çынна ялтан
çавăтса тухнă та унăн куçне сурчăкпа йĕпетсе
шăлса, ун çине аллине хурса ыйтнă: «Мĕн те пулин
куратăн-и?» 24 Лешĕ пăхнă та çапла каланă:
«Уçăмсăр курăннă пирки иртсе çӳрекен çынсем
йывăç пек курăнаççĕ». 25 Иисус каллех аллипе ун
куçне сĕртĕннĕ, пăхма каланă. Суккăр çын вара
тӳрленнĕ, йăлтах витĕр куракан пулнă. 26 Вара
Иисус ăна киле ярса çапла каланă: «Яла-мĕне кĕрсе
ан тăр, ялта никама та каласа ан кăтарт».

*Иисус кам пулнине Петр пĕлтерни*
(Мф. 16:13-20; Лк. 9:18-21)

27 Унтан Иисуспа вĕренекенĕсем Филипп
Кесарийĕ таврашĕнчи ялсене кайнă. Çул çинче
Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсенчен: «Çынсем Мана Кам
вырăнне хураççĕ?» – тесе ыйтнă. 28 «Пĕрисем –
Шыва кĕртекен Иоанн вырăнне, теприсем вара –
Илия вырăнне, хăшĕ-пĕрисем тата – пĕр-пĕр урăх
пророк вырăнне хураççĕ», – тавăрнă
вĕренекенĕсем. 29 «Эсир хăвăр вара Мана Кам
вырăнне хуратăр?» – ыйтнă вĕсенчен Иисус. «Эсĕ –
Турă Суйласа илни, Христос», – тавăрса каланă Ăна
Петр. 30 Иисус вĕсене Хăй çинчен никама та калама
хушман.

*Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен калани*
(Мф. 16:21-28; Лк. 9:22-27)

31 Унтан Иисус вĕренекенĕсене Этем Ывăлĕ нумай
асап курасси çинчен, ятлă-сумлă çынсемпе аслă
священниксем тата саккун вĕрентӳçисем Хăйне
йышăнас çукки çинчен кала пуçланă. Тата Вăл
Хăйне вĕлересси çинчен, виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе
тăрасси çинчен те каласа панă. 32 Çак сăмахсене
Вăл уççăнах каланă. Анчах та Петр Ăна, аяккарах
чĕнсе илсе, хирĕçлеме пуçланă. 33 Вара Иисус
вĕренекенĕсем çине çавăрăнса пăхнă та Петра пат
татса çапла каланă: «Кай Ман патăмран, шуйттан!
Эсĕ Турра юрăхли çинчен мар, этеме юрăхли
çинчен шухăшлатăн!» 34 Унтан халăха тата Хăйĕн
вĕренекенĕсене чĕнсе илсе каланă: «Кам Ман
хыççăн пырас тет, çав хăй çинчен манса, хăйĕн асап
хĕресне йăтса, Ман хыççăн пытăр. 35 Мĕншĕн тесен
хăйĕн пурăнăçне упраса хăварас текен ăна çухатĕ.
Хăйĕн пурăнăçне Мана тата Ырă Хыпара халалласа
çухатакан ăна упраса хăварĕ. 36 Çын, пĕтĕм тĕнчене
хăй аллине илсен те, хăй чунне сиен тусан, ăна мĕн
усси пулĕ? 37 Çын хăй чунне мĕн хакпа илейĕ? 38 Кам
çак пăсăк та çылăхлă ăру хушшинче Манран тата
Ман сăмахăмсенчен вăтанать, Этем Ывăлĕ те Ашшĕ
мухтавĕпе, святой ангелĕсемпе пĕрле килсен
унран вăтанĕ».

9 1 «Чăн калатăп сире, – тенĕ унтан Иисус вĕсене,
– çакăнта тăракансенчен хăшĕ-пĕрисем Турă
Патшалăхĕ хăватлăн килнине хăйсем виличченех
курĕç».

*Иисус Христос сăн-сăпачĕ улшăнни*
(Мф. 17:1-13; Лк. 9:28-36)

2 Пĕр ултă кун иртсен Иисус Петра, Иакова тата
Иоана ыттисенчен уйрăммăн Хăйпе пĕрле çӳллĕ ту
çине илсе кайнă. Вара Унăн сăн-сăпачĕ вĕсен
умĕнчех улшăннă: 3 Унăн тумтирĕ юр пек чăлт
шуррăн çуталса тăнă, çĕр çинчи пĕр шуратакан та
унашкал шуратаймасть. 4 Сасартăк вĕсене Иисуспа
калаçса тăракан Илияпа Моисей курăннă. 5 Çавăн
чухне Петр Иисуса каланă: «Равви! Епле аван пире
кунта. Атьăр виçĕ хӳшĕ тăвар: пĕрне – Сан валли,
теприне – Моисей валли, тата теприне – Илия
валли». 6 Çакна вăл ним калама аптăранăран
каланă, мĕншĕн тесен вĕсем хăраса ӳкнĕ пулнă.
7 Сасартăк вĕсене пĕлĕт пырса хупăрласа илнĕ,
пĕлĕт çинчен вара: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Ăна
итлĕр!» – текен сасă илтĕннĕ. 8 Вĕренекенĕсем
йĕри-тавралла йăпăр-япăр пăхкаланă, анчах та
Иисуссăр пуçне урăх никама та курман.
9 Ту çинчен аннă чухне вара Иисус вĕсене мĕн
курни çинчен Этем Ывăлĕ вилĕмрен чĕрĕлсе
тăриччен никама та калама хушман. 10 Вĕсем
хушнине итленĕ: çын çине сăмах кăларман.
Вилĕмрен чĕрĕлсе тăрасси тени мĕне пĕлтерет-ши
тесе кăна пĕр-пĕринпе калаçнă. 11 «Мĕншĕн-ха
саккун вĕрентӳçисем Христосран маларах Илия
килмелле теççĕ?» – ыйтнă Унран вĕренекенĕсем.
12 Иисус вĕсене çапла тавăрса каланă: «Малтан
Илия килсе пурне те хатĕрлесе хумалла тени
тĕрĕсех ĕнтĕ. Эппин мĕншĕн-ха Этем Ывăлĕн
нумай асап курмалла, мăшкăл тӳсмелле тесе те
çырнă? 13 Калатăп сире: Илия килнĕччĕ ĕнтĕ. Анчах
та, Çырнинче каланă пекех, унпа çынсем хăйсем
мĕн тăвас тенине турĕç».

### *Усал сывлăш ернĕ ачана сыватни*
(Мф. 17:14-20; Лк. 9:37-43)

14 Унтан Иисус, ытти вĕренекенĕсем патне
пырсан, вĕсем тавра халăх йышлăн тăнине, саккун
вĕрентӳçисем Хăйĕн вĕренекенĕсемпе тавлашнине
курнă. 15 Ăна асăрхасанах пĕтĕм халăх тĕлĕнсе
кайнă, çынсем Ун патне чупа-чупа пырса сывлăх
суннă. 16 «Эсир вĕсемпе мĕн пирки тавлашатăр?» –
тесе ыйтнă Вăл саккун вĕрентӳçисенчен. 17 Халăх
хушшинчен пĕри Ăна çапла хуравланă:
«Вĕрентекен! Эпĕ Сан патна чĕлхесĕр тăвакан усал
сывлăш ернĕ ывăлăма илсе килтĕм. 18 Çав усал
сывлăш ăна ăçта ярса илет, çавăнта çĕре ӳкерет.
Вара ывăлăм кăпăк кăларса, шăлне шатăртаттарса
выртать, шăнăр туртнипе хытсах каять. Çав усала
хăваласа кăларма эпĕ Санăн вĕренекенӳсенчен
ыйтрăм, анчах вĕсем пултараймарĕç». 19 Иисус вара
ăна çапла тавăрса каланă: «Эй, ĕненмен ăру! Тата
хăçанччен Манăн сирĕнпе пулмалла-ши?
Хăçанччен Манăн сире тӳсмелле-ши? Ачине Ман
патăма илсе килĕр эппин». 20 Ăна Иисус патне илсе
пынă. Усал сывлăш Иисуса курнă-курманах ачана
чĕтретсе пăрахнă та, вăл çĕре ӳксе, кăпăк кăларса
йăвалана пуçланă. 21 «Ывăлна капла пулни
чылайранпа-и?» – ыйтнă вара Иисус ачан
ашшĕнчен. «Мĕн пĕчĕкренех, – тенĕ лешĕ. 22 – Усал
сывлăш ăна пĕтерес тесе вута та, шыва та темиçе
хут сиктерчĕ. Хĕрхенсем пире, мĕн те пулин тума
пултарсан, пулăшсам». 23 Иисус вара ăна çапла
каланă: «Мĕн чухлĕ те пулин ĕненетĕн пулсан,
ĕненекеншĕн Турă пурне те пултарттарать». 24 Ача
ашшĕ, куççульленсе, çав самантрах: «Ĕненетĕп,
Хуçамăр! Ĕненсех çитерейместĕп пулсан,
пулăшсам!» – тесе кăшкăрса янă. 25 Иисус, халăх
васкаса пуçтарăннине курса, усал сывлăша чарса
каланă: «Чĕлхесĕр-хăлхасăр тăвакан сывлăш, сана
хушатăп: тух ун ăшĕнчен, текех нихăçан та ун ăшне
ан кĕр!» 26 Вара усал сывлăш кăшкăрса ярса, ачана
чĕтретсе пăрахса ун ăшĕнчен тухнă. Ача вилнĕ пек
выртнине курсан: «Вилсе кайрĕ», – тенĕ чылайăшĕ.
27 Анчах та Иисус ăна аллинчен тытса тăратнă та,
вăл тăнă. 28 Унтан, Иисус пĕр пӳрте кĕрсен, куçа-
куçăн юлнă вĕренекенĕсем Унран çапла ыйтнă:
«Мĕншĕн эпир усала хăваласа кăлараймарăмăр?»
29 «Усал-тĕсел тавраш кĕлтунипе тата типĕ
тытнипе çеç хăваласа кăларма пулать», – тенĕ вара
Иисус вĕсене.

### *Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен тепĕр хут калани*
(Мф. 17:22-23; Лк. 9:43-45)

30 Иисуспа вĕренекенĕсем çав тăрăхран кайнă.
Вĕсем Галилея çĕрĕпе пынă. Хăйсем унта пулнине
Иисус пĕлтересшĕн пулман. 31 Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсене: «Этем Ывăлне çынсен аллине
тытса парĕç, Ăна вĕлерĕç, вĕлерсен виççĕмĕш
кунне Вăл чĕрĕлсе тăрĕ», – тесе вĕрентсе каланă.
32 Анчах вĕсем çак сăмахсене ăнланса илеймен,
Хăйĕнчен ыйтма вара хăранă.

### *Кам аслăрах*
(Мф. 18:1-5; Лк. 9:46-48)

33 Иисуспа вĕренекенĕсем Капернаума çитнĕ. Пĕр
пӳрте кĕрсен Иисус вĕренекенĕсенчен ыйтнă: «Çул
çинче эсир пĕр-пĕринпе мĕн çинчен
калаçаттăрччĕ-ха?» 34 Вĕсем чĕнмен, мĕншĕн тесен
çул тăршшĕпех хăйсенчен хăшĕ аслăраххи пирки
тавлашса пынă пулнă. 35 Ларсан Вăл Вун иккĕшне
Хăй патне чĕнсе илнĕ те çапла каланă: «Кам
пуринчен те аслă пулас тет, çав пуринчен те кĕçĕн,
пуриншĕн те тарçă пултăр». 36 Вара Вăл пĕр пĕчĕк
ачана вĕсен умне илсе пырса тăратнă. Унтан, ачана
ыталаса, вĕренекенĕсене каланă: 37 «Кам
çакнашкал ачасенчен пĕрне Ман ятăмшăн хапăл
тăвать, çав Мана йышăнать. Мана хапăл тăваканни
Мана çеç мар, Мана кунта Яракана та йышăнать».

### *Кам сире хирĕç мар, çав сире майлă*
(Лк. 9:49-50)

38 «Вĕрентекен! – тенĕ çавăн чухне Иоанн. – Эпир
Сан ятупа усалсене хăваласа кăларакан пĕр çынна
тĕл пултăмăр, анчах хамăрпа пĕрле çӳременрен
эпир ăна чартăмăр». 39 Иисус вара çапла каланă:
«Ан чарăр ăна: Ман ятăмпа хăват тăвакансенчен
нихăшĕ те Ман çинчен часах усал калаçас çук.
40 Кам сире хирĕç мар, çав сире майлă». 41 «Чăн
калатăп сире: кам сире Христос çыннисем тесе Ман
ятăмпа пĕр курка шыв ĕçтерет, çав хăйĕн илес
сăвапне çухатмĕ.

### *Илĕртӳсем çинчен*
(Мф. 18:6-9; Лк. 17:1-2)

42 Кам та кам çак Мана ĕненекен пĕчĕкскерсенчен
пĕрне те пулин илĕртсе çылăха кĕртет, çавăн мăйне
арман чулĕ çакса тинĕсе пăрахсан, ăна хăйне
лайăхрах пулĕччĕ. 43 Сана аллу çылăх тума илĕртет
пулсан, ăна касса пăрах: икĕ аллупа тамăка, сӳнми
вута кĕриччен ĕмĕрлĕх пурăнăça чăлаххăн кĕни
саншăн лайăхрах. 44 Унта, тамăкра, вĕсене çиекен
хурчĕ те вилмест, çунтаракан вучĕ те сӳнмест .
45 Сана уру çылăх тума илĕртет пулсан, ăна касса
пăрах: икĕ урупа тамăка, сӳнми вута пăрахниччен
ĕмĕрлĕх пурăнăça уксаххăн кĕни саншăн лайăхрах.
46 Унта, тамăкра, вĕсене çиекен хурчĕ те вилмест,
çунтаракан вучĕ те сӳнмест. 47 Сана куçу çылăх тума
илĕртет пулсан, ăна чавса кăларса пăрах: икĕ
куçупа тамăк вутне пăрахниччен Турă Патшалăхне
хăрах куçлăн кĕни саншăн лайăхрах. 48 Унта,
тамăкра, вĕсене çиекен хурчĕ те вилмест,
çунтаракан вучĕ те сӳнмест. 49 Турра кӳмелли кирек
епле выльăх-чĕрлĕхе те тăварпа тăварланă пекех
кашниннех вутпа тăварланмалла пулĕ. 50 Тăвар –
ырă япала, анчах вăл хăватне çухатсан унăн тутине
эсир епле тавăрăр? Чун-чĕрĕрте ĕненӳ тăварĕ
пултăр, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнăр».

### *Уйăрăласси çинчен*
(Мф. 19:1-12)

10 Унтан кайсан Иисус Иордан леш енчи çĕрсем
урлă Иудея тăрăхне пынă. Каллех Ун патне
халăх пуçтарăннă, каллех, яланхи пекех, Вăл
çынсене вĕрентнĕ. 2 Çавăнта Иисус патне

фарисейсем пынӑ та, Ӑна илӗртсе тӗрӗслес тесе,
ҫапла ыйтнӑ: «Упӑшкин хӑй арӑмне уйӑрса яма
юрать-и?» 3 «Моисей саккунӗ ун пирки мӗн
калать?» – тавӑрнӑ вӗсене Иисус. 4 «Уйӑрӑлу хучӗ
ҫырса парсан уйӑрӑлма Моисей ирӗк панӑ», – тенӗ
вӗсем. 5 Вара Иисус вӗсене ҫапла тавӑрса каланӑ:
«Моисей сире ҫав йӗркене чунӑрсем усӑлса
ҫитейменрен парса хӑварнӑ. 6 Чӑн малтанах вара,
тӗнчене пултарнӑ чухне, Турӑ ҫынсене арҫын тата
хӗрарӑм пулмалла тунӑ. 7 Ҫавӑнпа ҫын хӑйӗн
ашшӗ-амӑшне хӑварать те 8 арӑмӗпе пӗрлешет.
Вара иккӗшӗ пӗр ӳт пулаҫҫӗ, ӗнтӗ вӗсем иккӗн мар,
пӗр ӳт. 9 Ҫапла вара, Турӑ пӗрлештернине этем ан
уйӑртӑр». 10 Каярахпа пӗр килте Унӑн
вӗренекенӗсем каллех ҫавӑн ҫинчен ыйтнӑ.
11 Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Кам хӑй арӑмне
уйӑрса ярса урӑх арӑм илет, ҫав малтанхи арӑмне
урӑх хӗрарӑмпа улталать. 12 Арӑмӗ те упӑшкинчен
уйӑрӑлса урӑххине качча кайсан мӑшӑрне
улталать».

*Иисус ачасене пиллет*

(Мф. 19:13-15; Лк. 18:15-17)

13 Иисус аллипе сӗртӗнсе пиллетӗр тесе Ун патне
ачасене илсе пынӑ, анчах та вӗренекенӗсем ача-
пӑча илсе пыракансене Иисуса кансӗрлеме чарнӑ.
14 Ҫавна курсан Иисус, ҫилленсе, вӗсене каланӑ:
«Ачасене Ман патӑма ярӑр, килме ан чарӑр,
мӗншӗн тесен Турӑ Патшалӑхӗ вӗсем пеккисемшӗн.
15 Чӑн калатӑп сире: Турӑ Патшалӑхне кам ача пек
йышӑнмасть, ҫав унта кӗреймӗ». 16 Унтан Вӑл
ачасене ыталанӑ та вӗсем ҫине аллине хурса
пилленӗ.

*Иисуспа пӗр пуян ҫамрӑк*

(Мф. 19:16-30; Лк. 18:18-30)

17 Иисус ҫула кайма тухнӑ чухне пӗр ҫын чупса
пынӑ та Ун умне чӗркуҫленсе ларса Унран ҫапла
ыйтнӑ: «Ырӑ Вӗрентекен! Ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пулас
тесен манӑн мӗн тумалла-ши?» 18 «Мӗншӗн эсӗ
Мана ырӑ тетӗн? – тавӑрнӑ ӑна Иисус. – Пӗр
Турӑсӑр пуҫне никам та ырӑ мар. 19 „Мӑшӑрна ан
ултала, ҫынна ан вӗлер, ан вӑрла, судра суйса ан
пӗлтер, ӗҫе тӳрӗ татса пар, аҫу-аннӳне хисепле“
текен пил-хушусене эсӗ пӗлетӗн». 20 «Вӗрентекен, –
тавӑрса каланӑ вӑл, – эпӗ вӑл пил-хушусене мӗн
ачаранпах пӑхӑнса пурӑнатӑп». 21 Вара Иисус ӑна
тинкерсе пӑхнӑ та ӑшшӑн каланӑ: «Ӗнтӗ сана пӗр
япала кӑна ҫитеймест: кай та пӗтӗм пурлӑхна сутса
чухӑнсене валеҫсе пар, вара сан валли пурлӑх
пӗлӗт ҫинче пулӗ. Ху кил те, асап хӗресне йӑтса,
Ман хыҫҫӑн пыракан пул». 22 Ҫак сӑмахсене илтсен
вӑл аптӑраса кайнӑ та салхуллӑн пӑрӑнса утнӑ,
мӗншӗн тесен вӑл питӗ пуян пулнӑ.
23 Вара Иисус йӗри-тавралла пӑхса илсе Хӑйӗн
вӗренекенӗсене ҫапла каланӑ: «Пуян ҫынсене Турӑ
Патшалӑхне кӗмешкӗн епле йывӑр!» 24 Иисусӑн ҫак
сӑмахӗсене илтсен вӗренекенӗсем тӗлӗнсе хытсах
кайнӑ. Анчах та Иисус вӗсене татах ҫапла каланӑ:
«Ачамсем, пуянлӑха шанакансене Турӑ Патшалӑхне
кӗмешкӗн епле йывӑр! 25 Пуяна Турӑ Патшалӑхне
кӗрессинчен тӗвене йӗп ҫӑрти витӗр тухма
ҫӑмӑлрах». 26 «Эппин кам ҫӑлӑнма пултарӗ?» – шалт
аптӑранипе пӗр-пӗринпе калаҫнӑ вӗренекенӗсем.
27 Иисус вӗсем ҫине тинкерсе пӑхса ҫапла каланӑ:
«Этем ӑна тума пултараймӗ, анчах та Турӑ тӑваять,
мӗншӗн тесен Турӑ пурне те пултарать». 28 Вара
Петр Ӑна кала пуҫланӑ: «Акӑ эпир хамӑрӑн мӗн
пуррине пӗтӗмпех хӑвартӑмӑр та Сан хыҫҫӑн
пыракансем пултӑмӑр». 29 «Чӑн калатӑп сире, – тенӗ
Иисус, – кам та кам Маншӑн тата Ырӑ Хыпаршӑн е
кил-ҫуртне, е тӑванӗсене, е ашшӗ-амӑшне, е
арӑмне, е ачисене, е ани-ҫаранне хӑварать, ҫавӑ
30 халех, ҫак хӗсӗрлев саманинчех кил-ҫуртне те,
тӑванне те, ашшӗ-амӑшне те, ачисене те, ани-
ҫаранне те ҫӗр хут ытларах илӗ. Лери пурӑнӑҫра
вара вӑл ӗмӗрлӗх чӗрӗлӗхлӗ пулӗ. 31 Малтисем
чылайӑшӗ кайра пулӗҫ, кайрисем малта пулӗҫ».

*Иисус Хӑй вилсе чӗрӗлесси ҫинчен виҫҫӗмӗш хут калани*

(Мф. 20:17-19; Лк. 18:31-34)

32 Вӗсем Иерусалима каякан ҫулпа пынӑ.
Сехӗрленсе ӳкнӗ вӗренекенӗсем умӗнче Иисус
пынӑ, вӗсем хыҫҫӑн вара хӑраса кайнӑ халӑх утнӑ.
Иисус Вун иккӗшне чӗнсе илсе вӗсене каллех Хӑйне
мӗн кӗтнине кала пуҫланӑ: 33 «Акӑ ӗнтӗ эпир
Иерусалималла хӑпарса пыратпӑр, унта Этем
Ывӑлне аслӑ священниксемпе саккун вӗрентӳҫисен
аллине тытса парӗҫ. Вӗсем Ӑна суд туса вӗлерме
йышӑнӗҫ, унтан урӑх халӑх ҫыннисен аллине
парӗҫ. 34 Лешӗсем Ӑна мӑшкӑл кӑтартӗҫ, чӗн
пушӑпа хӗнӗҫ, питрен сурса пӗтерӗҫ. Ӑна вӗлерӗҫ,
виҫҫӗмӗш кунне Вӑл чӗрӗлсе тӑрӗ».

*Иаковпа Иоанн ыйтни*

(Мф. 20:20-28)

35 Ҫавӑн чухне Ун патне Зеведей ывӑлӗсем
Иаковпа Иоанн пынӑ та ҫапла каланӑ: «Вӗрентекен!
Эпир мӗн ыйтнине туса парсамччӗ». 36 «Сирӗншӗн
мӗн тумалла вара Манӑн?» – ыйтнӑ Иисус. 37 «Эсӗ
Хӑвӑн чаплӑ Патшалӑхунта пире пӗрне Хӑвӑнтан
сылтӑм енне, теприне сулахай енне лармалла
тусамччӗ!» – тенӗ вӗсем Ӑна. 38 Анчах та Иисус
вӗсене ҫапла тавӑрнӑ: «Хӑвӑр мӗн ыйтнине хӑвӑр
та пӗлместӗр. Эпӗ ӗҫес асап куркине ӗҫме, Эпӗ
кӗрес асап шывӗпе тӗне кӗме пултарайӑр-и эсир?»
39 «Пултаратпӑр», – тенӗ вӗсем. «Эпӗ ӗҫес асап
куркине сире те ӗҫме лекӗ, Эпӗ кӗрес асап шывӗпе
сире те тӗне кӗме тивӗ. 40 Анчах Хамран сылтӑм е
сулахай енне лартаканӗ Эпӗ мар. Турӑ кам валли
хатӗрленӗ, ҫавсем ларӗҫ». 41 Ҫакна илтсен тепӗр
вунӑ вӗренекенӗ Иаковпа Иоана тарӑхса кайнӑ.
42 Иисус вара вӗренекенӗсене чӗнсе илсе ҫапла
каланӑ: «Халӑхсен князӗсем пулма тивӗҫнисем
халӑхпа хуҫаланнине, пуҫлӑхсем те халӑха
пӑхӑнтарнине эсир пӗлетӗр. 43 Анчах сирӗн
хушшӑрта апла пулмалла мар: хӑвӑр хушшӑрта
асли пулас текенӗн ыттисемшӗн тарҫӑ пулмалла.
44 Хӑвӑр хушшӑрта малти пулас текенӗн

ыттисемшĕн чура пулмалла. 45 Мĕншĕн тесен Этем
Ывăлĕ те Хăйшĕн тăрăштарма килмен, Хăй
çынсемшĕн тăрăшас тесе, нумайăшне çăлмашкăн
Хăй чунне тӳлевлĕхе пама килнĕ».

*Суккăр Вартимее сыватни*

(Мф. 20:29-34; Лк. 18:35-43)

46 Вĕсем Иерихона çитнĕ. Иисуспа вĕренекенĕсем
тата темĕн чухлĕ халăх хуларан тухнă чухне пĕр
суккăр çын, Тимей ывăлĕ Вартимей, çул хĕрринче
ыйткаласа ларнă. 47 «Иртсе пыраканни – Иисус
Назорей», – тенине илтсен Вартимей кăшкăрса
каланă: «Давид йăхĕнчи Иисус! Хĕрхенсем мана!»
48 Нумайăшĕ ăна шăпланма хушнă, анчах вăл тата
хытăрах: «Давид йăхĕн Ывăлĕ! Хĕрхенсем мана!» –
тесе кăшкăрнă. 49 Иисус чарăннă та ăна чĕнсе илме
хушнă. Вара çынсем хайхи суккăра: «Ан хăра, тăр,
Вăл сана пыма хушать», – тенĕ. 50 Вартимей çиелти
тумне хывса пăрахсах сиксе тăнă та Иисус патне
пынă. 51 «Эсĕ Мана мĕншĕн чĕнетĕн?» – тенĕ ăна
Иисус. «Вĕрентекен! Манăн куракан пуласчĕ», –
тенĕ Ăна суккăр çын. 52 Иисус ăна çапла каланă:
«Ĕнтĕ каях, ĕненĕвӳ çăлчĕ сана». Вăл вара çав
самантрах куракан пулнă та çулпа Иисус хыççăн
кайнă.

*Иисус Христос Иерусалим хулине кĕни*

(Мф. 21:1-11; Лк. 19:28-40; Ин. 12:12-19)

11 Иисуспа вĕренекенĕсем Иерусалималла
çывхарса пынă. Çавăн чухне, Елеон тăвĕ
патĕнчи Виффагипе Вифани тĕлне çитсен, Иисус
икĕ вĕренекенне 2 çапла хушса янă: «Çак хăвăр
умăрти яла кайăр, кĕнĕ-кĕменех унта эсир кăкарса
хунă çамрăк ашака асăрхăр, ун çине ку таранччен
никам та утланса çӳремен. Эсир ăна вĕçертсе
çавăтса килĕр. 3 Кам та пулин сире: „Мĕн
хăтланатăр?“ – тесен, эсир çапла калăр: „Вăл
Хуçамăра кирлĕ, Хуçамăр часах ăна каялла тавăрса
парĕ“». 4 Вĕсем кайнă та урамра хапха умне кăкарса
хунă çамрăк ашака тупса, ăна вĕçертсе илнĕ. 5 «Мĕн
хăтланатăр? – тенĕ вĕсене çавăнта тăракансенчен
хăшĕ-пĕрисем. – Ашака мĕншĕн вĕçертетĕр?»
6 Вĕсем Иисус хушнă пек хуравланă та, çынсем
вĕсене янă. 7 Унтан хайхи çамрăк ашака Иисус
патне çавăтса пынă, ашак çине хăйсен тумтирĕсене
хунă. Иисус вара ун çине утланса ларнă. 8 Темĕн
чухлĕ халăх хăйсен тумтирĕсене Иисус умне çул
тăрăх сарса пынă, теприсем тата йывăç турачĕсем
касса çул тăрăх пăрахса пынă. 9 Умĕнче пыракансем
те, хыçалта пыракансем те мухтаса çапла
кăшкăрнă: «Осанна! Хуçа Турă ячĕпе Килекен
мухтавлă! 10 Мăн асаттемĕрĕн Давидăн Хуçа Турă
ячĕпе килекен Патшалăхĕ мухтавлă! Çӳл тӳпере те
осанна!» 11 Иисус Иерусалима кĕрсен Турă Çуртне
пынă та пĕтĕмпех тĕплĕн пăхса çаврăннă. Вара
тĕттĕм пулса киличчен хуларан тухса Вун иккĕшĕпе
пĕрле Вифание кайнă.

*Çимĕççĕр смоква йывăççи*

(Мф. 21:18-19)

12 Тепĕр кунне, вĕсем Вифаниren тухсан, Иисусăн
çиесси килнĕ. 13 Вăл аякранах ешĕл çулçăллă
смоква йывăççине асăрханă та ун çинче çимĕç пур-
ши тесе йывăç патне пынă. Анчах та патнерех
пырсан ун çинче çулçăсăр пуçне урăх ним те
тупайман, мĕншĕн тесен смоква çимĕçне пухас
вăхăт çитеймен пулнă-ха. 14 «Сан çинчен текех
ĕмĕрне те никамăн та çимĕç татса çимелле ан
пултăр», – тенĕ вара Иисус йывăçа. Çак сăмахсене
вĕренекенĕсем те илтнĕ.

*Иисус Турă Çуртĕнчи сутуçăсене хăваласа кăларни*

(Мф. 21:12-17; Лк. 19:45-48; Ин. 2:13-22)

15 Унтан вĕсем Иерусалима çитнĕ. Иисус Турă
Çуртне кĕнĕ те унта суту-илӳ тăвакансене хăваласа
кăларма пуçланă. Вăл укçа улăштаракансен
сĕтелĕсене, кăвакарчăн сутакансен тенкелĕсене
тӳнтере-тӳнтере янă, 16 Турă Çурчĕ витĕр тĕрлĕ
ăпăр-тапăр çĕклесе çӳреме чарнă. 17 Вĕсене
вĕрентсе Вăл çапла каланă: «„Манăн çуртăма пур
халăхсемшĕн те лартнă кĕлĕ çурчĕ тесе калĕç“, –
темен-им Çырнинче? Эсир вара ăна вăрă-хурах
йăви туса хунă». 18 Çак сăмахсене илтнĕ саккун
вĕрентӳçисемпе аслă священниксем Иисуса
пĕтерме май шыранă. Пĕтĕм халăх Унăн
вĕрентĕвĕнчен тĕлĕннĕ пирки вĕсем Иисусран
хăранă. 19 Вара Вăл тĕттĕм пулса киличчен хуларан
тухса кайнă.

*Ĕненессипе каçарасси çинчен*

(Мф. 21:20-22)

20 Ирхине иртсе пынă чух вĕсем хайхи смоква
йывăççи тымарĕ таранах типсе ларнине курнă.
21 Вара Петр, аса илсе, Иисуса каланă: «Равви! Пăх-
ха, хайхи Эсĕ ылханнă смоква йывăççи типсе
ларнă». 22 Иисус вĕренекенĕсене çапла тавăрса
каланă: 23 «Турра ĕненĕр! Чăн калатăп сире, кам çак
тăва: „Вырăнунтан тапран та тинĕсе кĕрсе ӳк“, –
тесе чун-чĕрипе иккĕленмесĕр, хăй калани
пурнăçланасса ĕненсе калать, вăл кирек мĕн
калани те пулатех. 24 Çавăнпа калатăп сире: эсир
кĕлтунă чухне мĕн ыйтатăр, çавна парасса ĕненĕр –
вара илетĕрех. 25 Кама та пулин кӳреннĕ пулсан,
кĕлĕ тунă чухне эсир ăна каçарăр. Вара Çӳлти Аçăр
та сирĕн çылăхăрсене каçарĕ. 26 Эсир каçармастăр
пулсан, Çӳлти Аçăр та сирĕн çылăхăрсене каçармĕ»
.

*Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?*

(Мф. 21:23-27; Лк. 20:1-8)

27 Иисуспа вĕренекенĕсем каллех Иерусалима
тавăрăннă. Вăл Турă Çуртĕнче çӳренĕ чухне Ун
патне аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем
тата ятлă-сумлă çынсем пынă. 28 «Эсĕ çакна мĕнле
тивĕçпе тăватăн? Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?»
– тесе ыйтнă вĕсем. 29 Иисус вĕсене хирĕç çапла
каланă: «Манăн та сирĕнтен пĕр сăмах ыйтмалли
пур. Эсир çавна хуравласан, эпĕ те сире çакна
мĕнле тивĕçпе тунине пĕлтерĕп. 30 Калăр-ха Мана:
Иоанн шыва кĕртни çӳлтен е этемрен пулнă?»
31 Лешсем вара пĕр-пĕринпе канашлама пуçланă:
«Çӳлтен», – тесен, «Эсир Иоана мĕншĕн
ĕненмерĕр?» – тейĕ Вăл. 32 «Этемрен», – тесе вара
вĕсем халăхран хăранипе калайман, мĕншĕн тесен

пурте Иоана чăн-чăн пророк тесе шутланă.
33 «Пĕлместпĕр», – тенĕ вара вĕсем Иисуса. «Эппин
Эпĕ те сире çакна мĕнле тивĕçпе тунине
каламастăп», – тавăрнă вĕсене Иисус.

*Усал пахчаçăсем çинчен каланă ытарлăх*

(Мф. 21:33-46; Лк. 20:9-19)

12 Иисус вĕсене ытарлăн калама пуçланă: «Пĕр
çын иçĕм çырли лартса пахча тунă, йĕри-
тавра карта тытса çавăрнă. Унтан вăл сĕткен пусса
кăлармалли юхтаркăч чавнă тата хурал пӳрчĕ
лартнă. Вара пахчине тара панă та хăй урăх çĕре
тухса кайнă. 2 Иçĕм çырли татма вăхăт çитсессĕн
вăл тарçине пахчаçăсем патне çырла илме янă.
3 Анчах та лешсем тарçăна тытнă та хĕнесе тăкса
пуш алăпах янă. 4 Вара хуçа вĕсем патне тепĕр
тарçине янă. Вĕсем ăна та пуçне чулпа персе
шăтарса, мăшкăл туса янă. 5 Тата тепĕр тарçине янă
та, пахчаçăсем ăна вĕлернĕ. Ытти янă тарçăсене те
е хĕненĕ, е вĕлернĕ. 6 Çав хуçан пĕртен-пĕр савнă
ывăлĕ пулнă. „Ывăлăмран вăтанĕçех“, – тенĕ те вăл
юлашкинчен пахчаçăсем патне хайхи ывăлне янă.
7 Анчах та пахчаçăсем, хуçа ывăлне курсан, пĕр-
пĕрне çапла каланă: „Ашшĕн пурлăхĕ çакна
юлмалла, атьăр ăна вĕлерер те тивĕçлĕ еткерне
хамăр илер“. 8 Вара вĕсем ăна тытса вĕлернĕ те
иçĕм çырли пахчинчен кăларса пăрахнă. 9 Çавăн
хыççăн пахча хуçи мĕн тăвĕ? Вăл пырĕ те
пахчаçăсене вĕлерттерĕ, пахчине урăххисене парĕ.
10 „Çурт тăвакансем пăрахăçланă чул никĕсри тĕп
чул пулса тăчĕ; çакна Хуçамăр турĕ, çакна эпир
пăхса ытараймастпăр“, – тенĕ Çырнинче. Эсир
çавна та вуламан-им?» 12 Хайхи Иисуса илĕртсе
тĕрĕслекенсем çак ытарлăха хăйсем çинчен
каланине ăнланса илнĕ те Ăна ярса тытасшăн
пулнă, анчах та халăхран хăранă. Вара вĕсем
çавăрăнса утнă.

*Рим патшине тӳлемелли налук*

(Мф. 22:15-22; Лк. 20:20-26)

13 Унтан вĕсем, Иисус каланинче айăпламалли
сăлтав тупасчĕ тесе, Ун патне темиçе фарисея тата
Ирод майлисене янă. 14 Лешсем пынă та Ăна çапла
каланă: «Вĕрентекен! Эсĕ тӳрĕлĕхлĕ пулнине,
никама та юрама тăрăшманнине эпир пĕлетпĕр.
Эсĕ çынна кам пулнине кура хакламастăн, чăнах та
Турă çулĕ çинчен вĕрентетĕн. Эппин каласамччĕ:
эпир Рим патшине налук тӳлени тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-
и? Çав налука пирĕн памалла-и, памалла мар-и?»
15 Анчах та Иисус, вĕсен чеелĕхне пĕлсе тăрса,
çапла каланă: «Мĕн эсир Мана илĕртсе тĕрĕслетĕр?
Мана пĕр динарийлĕх укçăра илсе килсе кăтартăр-
ха». 16 Лешсем илсе пынă. Иисус вĕсене каланă:
«Çакăнта кам сăнне çаптарнă, кам ятне çырнă?»
«Патшанне», – тенĕ Ăна вĕсем. 17 Вара Иисус,
вĕсене хуравласа, çапла каланă: «Патшанне
патшана парăр, Туррăнне – Турра». Унăн
сăмахĕсене илтсен вĕсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ.

*Вилнисем чĕрĕлсе тăрасси çинчен ыйтни*

(Мф. 22:23-33; Лк. 20:27-40)

18 Унтан Иисус патне вилнисем чĕрĕлсе тăрасса
ĕненмен саддукейсем пырса ыйтнă: 19 «Вĕрентекен!
Моисей пирĕн валли çапла çырса хăварнă: „Камăн
та пулин ача-пăчасăр пиччĕшĕ вилсен, арăмĕ
тăлăха юлсан, шăллĕ унăн арăмне качча илтĕр,
пиччĕшĕн йăхне тăстăр“. 20 Пĕр кил-йышра çичĕ
пĕртăванччĕ. Асли авланчĕ те ача-пăчасăрах
вилчĕ, 21 вара унăн арăмне иккĕмĕшĕ илчĕ. Вăл та
ача-пăчаллă пулаймасăрах вилчĕ. Виççĕмĕшĕпе те
çаплах пулчĕ. 22 Çав арăма умлăн-хыçлăн çиччĕшĕ
те качча илчĕç пулин те, ача-пăча таврашĕ
юлмарĕ. Пуринчен кайран арăмĕ те вилчĕ. 23 Ĕнтĕ
вилнисем чĕрĕлсе тăрас вăхăт çитсен вăл хăшĕн
арăмĕ пулĕ-ши? Çиччĕшĕ те унпа пурăннă-çке-ха».
24 Иисус вĕсене çапла хуравланă: «Эсир Çырнине те,
Турă хăватне те пĕлмесĕр çак тĕслĕхпех аташатăр-
и? 25 Вилнĕ çынсем, чĕрĕлсе тăрсан, авланмĕç те,
качча та каймĕç, вĕсем тӳпери ангелсем пек пулĕç.
26 Вилнисем чĕрĕлсе тăрасси пирки вара Моисей
кĕнекинче каланă. Çунса тăракан тĕмĕ çинчен
каланă тĕле вуламан-им эсир? Унта Турă ăна: „Эпĕ –
Авраам Турри те, Исаак Турри те, Иаков Турри те“, –
темен-им? 27 Турă вăл вилнисен Турри мар,
чĕррисен Турри. Çапла вара, эсир пит йăнăш
шухăшлатăр».

*Чи аслă пил-хушу*

(Мф. 22:34-40; Лк. 10:25-28)

28 Саккун вĕрентӳçисенчен пĕри, вĕсем
тавлашнине курса тăрса, Иисус саддукейсене епле
аван тавăрса каланине илтсе, патнерех пынă. «Чи
аслă пил-хушу хăшĕ?» – тесе ыйтнă вăл Иисусран.
29 Вара Иисус çапла хуравланă: «Малтанхи пил-
хушу çакă: „Эй, Израиль халăхĕ, итле! Пирĕн Хуçа
Туррăмăр – пĕртен-пĕр Хуçамăр. 30 Хуçа Турруна
пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм чунран, пĕтĕм ăс-халтан,
пĕтĕм вăй-халтан юрат“. Çакă – чи аслă пил-хушу!
31 Иккĕмĕшĕ те çавнашкалах аслă: „Çывăх çыннуна
хăвна юратнă пек юрат“. Çаксенчен аслăрах пил-
хушу урăх çук», – тенĕ Вăл. 32 «Вĕрентекен! Эсĕ
чаплă хурав патăн, – тенĕ вара Ăна саккун
вĕрентӳçи. – Турă пĕрре анчах, Унран урăххи çук
тесе Эсĕ чăннине каларăн. 33 Ăна пĕтĕм чĕререн,
пĕтĕм ăс-халтан, пĕтĕм чунран, пĕтĕм вăй-халтан
юратмаллине те, çывăх çынна хăвна юратнă пек
юратмаллине те Эсĕ тĕрĕс каларăн. Çак пил-
хушусене тытса пыни кирек епле парнерен те –
пĕтĕмĕшпе çунтарса кӳнинчен те, ыттисенчен те –
пахарах». 34 Саккун вĕрентӳçи ăслă калаçнине кура
Иисус ăна çапла каланă: «Эсĕ Турă Патшалăхĕнчен
инçех те мар». Çавăнтан кайран никам та Ăна
ыйтусем пама хăяйман.

*Турă Суйласа илни кам йăхĕнчен пулмалла?*

(Мф. 22:41-46; Лк. 20:41-44)

35 Турă Çуртĕнче тата малалла вĕрентсе Иисус
çапла каланă: «Епле-ха саккун вĕрентӳçисем Турă
Суйласа илни Давид йăхĕнчен пулмалла теççĕ?
36 Давид хăй те, Святой Сывлăш витĕмĕпе, çапла

каланӑ пулнӑ-ҫке: „Хуҫамӑр манӑн Хуҫама ҫапла
каланӑ: Эпӗ Санӑн тӑшманусене уру айне тӑвиччен
Эсӗ Манӑн сылтӑм енче лар“. 37 Ҫапла вара, Давид
хӑй Ӑна Хуҫам тет. Эппин епле-ха Вӑл унӑн
йӑхӗнчен пулма пултарать?» Темӗн чухлӗ халӑх Ӑна
савӑнса итлесе тӑнӑ.

*Саккун вӗрентӳҫисенчен асӑрхаттарни*

(Мф. 23:1-36; Лк. 20:45-47)

38 Малалла Иисус ҫапла вӗрентсе каланӑ: «Саккун
вӗрентӳҫисенчен асӑрханӑр. Вӗсем вӑрӑм тумтирпе
саркаланса ҫӳреме юратаҫҫӗ, халӑх йышлӑ ҫӗрте
хӑйсене саламланине килӗштереҫҫӗ. 39 Синагогӑра
вӗсем малта ларма, ӗҫкӗ-ҫикӗре кӗрекере ларма
юратаҫҫӗ. 40 Ҫавсене, тӑлӑх арӑмсене кил-ҫуртсӑр
хӑваракансене, ҫын умӗнче юриех нумайччен
кӗлтӑвакансене, ыттисенчен те йывӑртарах
айӑплав пулӗ».

*Тӑлӑх арӑмӑн икӗ вак укҫи*

(Лк. 21:1-4)

41 Иисус парне арчине хирӗҫ ларнӑ та ҫынсем
унта укҫа янине сӑнанӑ. Пуянсенчен чылайӑшӗ
нумай хунӑ. 42 Унтан пӗр чухӑн тӑлӑх хӗрарӑм пынӑ
та пӗр кодрант чухлӗ икӗ вак укҫа хунӑ. 43 Вара
Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене чӗнсе илсе ҫапла
каланӑ: «Чӑн калатӑп сире: ҫак чухӑн тӑлӑх хӗрарӑм
укҫа хуракансенчен пуринчен те ытларах хучӗ.
44 Мӗншӗн тесен пурте арчана ытлашшине ячӗҫ, ку
тӑлӑх хӗрарӑм вара пур-ҫук юлашки укҫине хучӗ,
хӑйне пурӑнмалӑх укҫине пӗтӗмпех арчана ячӗ».

*Турӑ Ҫуртне аркатасси ҫинчен*

(Мф. 24:1-2; Лк. 21:5-6)

13 Иисус Турӑ Ҫуртӗнчен тухнӑ чухне Ӑна пӗр
вӗренекенӗ ҫапла каланӑ: «Вӗрентекен! Кур-
ха, ҫурчӗсем те, вӗсене купаланӑ чулӗсем те епле
чаплӑ!» 2 Иисус ӑна хирӗҫ каланӑ: «Куратӑн-и ҫак
капмар ҫуртсене? Ҫакӑнта чул ҫинче чул та юлмӗ,
йӑлтах аркатӗҫ».
3 Тепӗртакран, Иисус Елеон тӑвӗ ҫинче Турӑ Ҫурчӗ
курӑнакан вырӑнта ларнӑ чухне, Петрпа Иаков тата
Иоанпа Андрей Унпа куҫа-куҫӑн юлсассӑн ҫапла
ыйтнӑ: 4 «Каласамччӗ пире: вӑл хӑҫан пулӗ? Ҫавсем
пурте пуласса мӗнле паллӑ тӑрӑх пӗлмелле?»
5 Вӗсене хуравласа вара Иисус ҫапла кала пуҫланӑ:
«Хӑвӑра кам та пулин илӗртсе улталасран
асӑрханӑр, 6 мӗншӗн тесен Ман ятӑмпа килекенсем
нумай пулӗҫ. „Эпӗ – Христос“, – тесе вӗсем
чылайӑшне улталӗҫ. 7 Вӑрҫӑсем ҫинчен илтсен,
вӑрҫӑ хыпарӗсем илсен, хӑраса ан ӳкӗр, мӗншӗн
тесен ҫапла пулмалла та, анчах ку пӗтес вӑхӑт мар-
ха. 8 Халӑх ҫине халӑх тапӑнӗ, патшалӑх ҫине
патшалӑх вӑрҫӑпа тухӗ, тӗллӗн-тӗллӗн ҫӗр чӗтренӗ,
выҫлӑх пуҫланӗ, халӑх пӑлханӗ. Ҫапах та ку – хӗн-
хур пуҫламӑшӗ кӑна-ха. 9 Эсир вара хӑвӑра хӑвӑр
сыхланса пурӑнӑр! Сире суд тума тытса парӗҫ,
синагогӑсенче хӗнӗҫ. Мана пула сире пуҫлӑхсемпе
патшасем умне Ман ҫинчен ҫирӗплетсе
пӗлтермешкӗн тӑратӗҫ. 10 Анчах та малтан пур
халӑхсем хушшинче те Ырӑ Хыпар сарӑлса
ҫитмелле. 11 Сире суда тытса пама илсе кайнӑ чухне
мӗн калас тесе малтанах ан кулянӑр, ан шухӑшлӑр.
Ҫав самантра мӗн каламалли хӑех тупӑнӗ, мӗншӗн
тесен калаканӗ эсир мар, Святой Сывлӑш пулӗ.
12 Тӑванӗ – тӑванне, ашшӗ ачисене вӗлерме тытса
парӗ. Ачи-пӑчисем ашшӗ-амӑшне хирӗҫ кайӗҫ,
вӗсене вилӗм кӳрӗҫ. 13 Ман ятӑмшӑн сире пурте
курайми пулӗҫ. Кам вӗҫне ҫитиччченех тӳсӗ, ҫав
ҫӑлӑнӗ».

*Хӑрушӑ асап-хуйхӑ ҫитесси ҫинчен*

(Мф. 24:15-28; Лк. 21:20-24)

14 «Даниил пророк калани ҫитсен, ирсӗр пулмалла
мар вырӑн ирсӗрлӗхпе юхӑнса тӑнине курсан, –
вулакан ҫакна ӑнлантӑр, – Иудея халӑхӗ тусем ҫине
тартӑр. 15 Кил хушшинчи ҫын япала таврашӗ илес
тесе пӳрте кӗрсе-туса ан тӑтӑр. 16 Хирти ҫын та
тумтир таврашӗ илес тесе каялла ан тавӑрӑнтӑр.
17 Ҫав кунсенче йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене,
кӑкӑр ҫитерекен амӑшӗсене пысӑк хуйхӑ пулӗ.
18 Тарса хӑтӑлас вӑхӑт хӗлле ан пултӑрччӗ ҫеҫ тесе
кӗлтӑвӑр. 19 Мӗншӗн тесен ун чухне хӑрушӑ асап-
хуйхӑ пулӗ. Унашкалли Турӑ пултарнӑ тӗнче
пуҫланнӑранпа халиччен пулман та, пулас та ҫук.
20 Хуҫа Турӑ асап кунӗсен шутне чакарман пулсан,
никам та ҫӑлӑнса юлаяс ҫукчӗ. Анчах та Хӑй суйласа
илнисене хӗрхенсе Вӑл ҫав кунсен шутне чакарӗ.
21 Ҫавӑн чухне кам та пулин сире: „Христос акӑ
кунта“ е: „Авӑ унта“, – тесен, ан ӗненӗр. 22 Мӗншӗн
тесен суя христоссемпе суя пророксем тупӑнӗҫ.
Вӗсем, тӗлӗнмелле паллӑсемпе хӑватсем кӑтартса,
май килсен суйласа илнисене те илӗртсе улталама
пӑхӗҫ. 23 Эсир вара сыхӑ пулӑр. Ҫаксем пирки Эпӗ
сире малтанах каласа хурас терӗм».

*Этем Ывӑлӗ килесси ҫинчен*

(Мф. 24:29-31; Лк. 21:25-28)

24 «Ҫав кунсенче, асап хыҫҫӑн, хӗвел тӗттӗмленӗ,
уйӑх ҫути сӳнӗ. 25 Тӳпери ҫӑлтӑрсем ӳкӗҫ, ҫӳлти вӑй-
хӑватсем кисренсе кайӗҫ. 26 Унтан ҫынсем тӳпери
пӗлӗтсем ҫинче аслӑран та аслӑ хӑватпа тата
мухтавпа килекен Этем Ывӑлне курӗҫ. 27 Ҫавӑн
чухне Вӑл Хӑйӗн ангелӗсене ярӗ, Хӑй суйласа илнӗ
ҫыннисене тӗнчен тӑватӑ енчен те, ҫӗр хӗрринчен
пуҫласа пӗлӗт хӗррине ҫитиччченех пуҫтарӗ».

*Смоква йывӑҫҫипе танлаштарни*

(Мф. 24:32-35; Лк. 21:29-33)

28 «Илер-ха, тӗслӗхрен, смоква йывӑҫҫине. Унӑн
турачӗсем папка кӑларса ешере пуҫласан эсир ҫу
ҫывхарнине пӗлетӗр. 29 Ҫавнашкалах эсир те, Эпӗ
калани пурнӑҫланса пынине курсан, ҫак тӗнче
пӗтес вӑхӑт ҫывхарнине, алӑк умнех ҫитнине пӗлсе
тӑрӑр. 30 Чӑн калатӑп сире: ҫавсем пурте ҫак ӑру
пӗтиччченех пулса иртӗҫ. 31 Ҫӗрпе пӗлӗт те пӗтӗ,
Ман сӑмахӑмсенчен пӗри те пӗтмӗ».

*Сыхӑ пулма чӗнни*

(Мф. 24:36-44)

32 «Ҫавӑ хӑш кун, хӑш сехетре пуласса никам та
пӗлмест, тӳпери ангелсем те, Ывӑлӗ те пӗлмест. Ӑна
пӗртен-пӗр Атте Турӑ кӑна пӗлет. 33 Астӑвӑр, сыхӑ
пулӑр, кӗлтӑвӑр, мӗншӗн тесен ҫав вӑхӑт хӑҫан
ҫитессе пӗлме пултараймастӑр. 34 Ун чухне ак ҫак

ытарлăхра каланă пек пулĕ. Пĕр çын инçе çула
кайма пуçтараннă. Килтен кайиччен вăл кашни
тарçинех харпăр-хăй ĕçĕшĕн яваплă пулма, хапха
хуралçине сыхă пулма хушса хăварнă. 35 Çапла вара
сыхă пулăр, мĕншĕн тесен кил хуçи те каçпа, те çур
çĕрте, те автан авăтсан, те ирхине килет. Эсир ăна
пĕлме пултараймастăр. 36 Астăвăр, вăл сасартăк
эсир çывăрнă тĕле килсе ан тухтăрччĕ. 37 Çакна
сире кăна мар, пурне те калатăп: сыхă пулăр».

*Иисуса хирĕç тунă кавар*
(Мф. 26:1-5; Лк. 22:1-2; Ин. 11:45-53)

14 Тата тепĕр икĕ кунтан пасха тата тутлăлла
çăкăр уявĕ çитмелле пулнă. Аслă
священниксемпе саккун вĕрентӳçисем Иисуса епле
те пулин чеелĕхпе тытса вĕлерме май шыранă.
2 Анчах та вĕсем çапла калаçса килĕшнĕ: «Иисуса
уяв вăхăтĕнче тытас мар, ахальлĕн халăх пăлханса
кайĕ».

*Иисуса Вифанире çупа сĕрни*
(Мф. 26:6-13; Ин. 12:1-8)

3 Иисус Вифанире юхан-суранлă Симон патĕнче
хăнара пулнă чухне çавăнта пĕр хĕрарăм кĕнĕ. Вăл
алебастр савăтпа таса та хаклă йышши нардран
тунă ырă шăршăллă мирă илсе пынă. Хĕрарăм, чул
савăтне çапса уçса, Унăн пуçне çав çупа сĕре
пуçланă. 4 «Мĕне кирлĕччĕ мирăна пĕтерсе
кунашкал тăкакланни?» – тарăхса калаçнă хăш-пĕр
хăнисем. 5 «Ăна виç çĕр динарийрен те ытлараха
сутса укçине чухăнсене пама пулатчĕ», – тесе
ӳпкеленĕ вĕсем хĕрарăма. 6 Вара Иисус çапла
каланă: «Ан тивĕр ăна, мĕншĕн эсир хĕрарăма
пăшăрхантаратăр? Вăл Маншăн ырă ĕç турĕ.
7 Чухăнсем сирĕн яланах пулĕç, эсир вĕсене хăçан
ырă тăвас тетĕр, çавăн чухне пулăшма пултаратăр.
Эпĕ вара сирĕнпе яланах пулас çук. 8 Çак хĕрарăм
хăй мĕн тума пултарнине турĕ: Ман ӳтĕме пытарма
хатĕрлесе çу сĕрчĕ. 9 Чăн калатăп сире: çак Ырă
Хыпара ăçта вĕрентĕç, çавăнта – пĕтĕм тĕнчипех –
ку хĕрарăма та аса илĕç, вăл мĕн туни çинчен те
калаçĕç».

*Иуда Искариот сутăнчăклăхĕ*
(Мф. 26:14-16; Лк. 22:3-6)

10 Вун иккĕшĕнчен пĕри вара, Иуда Искариот,
Иисуса аслă священниксене тытса парас шухăшпа
вĕсем патне кайнă. 11 Лешсем Иуда шухăшне
пĕлсессĕн хĕпĕртесех ӳкнĕ, ăна кĕмĕл укçа пама
пулнă. Вара вăл Иисуса тытса пама меллĕ вăхăт
шыранă.

*Пасха апачĕ тума хатĕрленни*
(Мф. 26:17-25; Лк. 22:7-14, 21-23; Ин. 13:21-30)

12 Тутлăлла çăкăр уявĕн малтанхи кунĕнче, пасха
валли путек пусмалли вăхăтра, вĕренекенĕсем
Иисуса каланă: «Эсĕ пасха апачĕ ăçта çиес тетĕн?
Эпир кайса хатĕрлĕпĕр». 13 Вара Иисус Хăйĕн икĕ
вĕренекенне çапла каласа янă: «Хулана кайăр, унта
сире кăкшăмпа шыв çĕклесе пыракан пĕр çын тĕл
пулĕ. Эсир çав çын хыççăн кайăр. 14 Вăл кĕрекен
çуртри кил хуçине çапла калăр: „Вĕрентекен акă
мĕн ыйтать: Эпĕ Хамăн вĕренекенĕмсемпе пасха
апачĕ çиес пӳлĕм хăшĕ?“ 15 Кил хуçи сире янтăласа
хунă пысăк та хăтлă пӳлĕм кăтартĕ. Хамăр валли
пасха апачĕ çавăнта хатĕрлĕр». 16 Вĕренекенĕсем
кайнă, хулана çитнĕ. Пĕтĕмпех Иисус каланă пек
пулса иртнĕ. Унтан вĕсем пасха апачĕ хатĕрленĕ.

*Каçхи вăрттăн апатлану*
(Мф. 26:26-30; Лк. 22:15-20; 1 Кор. 11:23-25)

17 Каç пулсан Вун иккĕшĕпе пĕрле Иисус унта
пынă. 18 «Чăн калатăп сире, – тенĕ Иисус каçхи апат
çинĕ чухне, – сирĕнтен пĕри, Манпа пĕрле
çиекенскерех, Мана тытса парĕ». 19 Вĕренекенĕсем
хуйха ӳкнĕ, вара пĕрин хыççăн тепри Ăна: «Эпĕ
марах!» – теме пуçланă. 20 «Вун иксĕртен пĕри,
Манпа пĕрле пĕр чашăкран çăкăр пуçса çиекенни, –
тавăрнă Иисус вĕсене. 21 – Тепĕр тесен, Этем Ывăлĕ
Çырнинче палăртса хунă çулпа пырать. Анчах Этем
Ывăлне тытса паракана хуйхă пулĕ: çав çынна
çураличчен çуралманни лайăхрах пулнă пулĕччĕ».
22 Каçхи апат çинĕ чухне Иисус çăкăра илсе Турра
тав тунă та вĕренекенĕсене хуçа-хуçа парса: «Илĕр,
çиййĕр, çакă – Манăн Ӳтĕм», – тенĕ. 23 Унтан куркине
илсе Турра тав тунă, вара çав куркаран пурте ĕçнĕ.
24 Иисус вĕсене çапла каланă: «Çак хĕрлĕ эрех –
Çĕнĕ Халала çирĕплетекен, нумай çыншăн юхакан
Манăн Юнăм. 25 Чăн калатăп сире: ĕнтĕ Эпĕ иçĕм
çырли эрехне Турă Патшалăхĕнче çĕнĕ эрех ĕçес
кунчченех урăх ĕçеймĕп». 26 Вара, Турра мухтаса
юрланă хыççăн, Иисуспа вĕренекенĕсем Елеон тăвĕ
çине кайнă.

*Петр тунасса Иисус малтанах калани*
(Мф. 26:31-35; Лк. 22:31-34; Ин. 13:36-38)

27 Çавăн чухне Иисус вĕсене каланă: «Кĕçĕр эсир
пурте Мана шанма пăрахатăр, мĕншĕн тесен
Çырнинче çапла каланă: „Кĕтӳçне пĕтерĕп те,
сурăхĕсем саланса кайĕç“. 28 Чĕрĕлсе тăнă хыççăн
вара Эпĕ Галилейăра сирĕнтен те маларах пулăп».
29 «Сана пурте шанми пулсан та, эпĕ шанăп», – тенĕ
Ăна Петр. 30 «Чăн калатăп сана, – тенĕ вара ăна
Иисус, – кĕçĕрех, автан иккĕ авăтма ĕлкĕриччен,
эсĕ Мана виçĕ хутчен пĕлмĕш пулăн». 31 «Санпа
пĕрле вилмелле пулсассăн та Санран тунас çук», –
тенĕ Петр çине тăрсах. Ыттисем те çавнашкалах
каланă.

*Елеон тăвĕ çинче кĕлтуни*
(Мф. 26:36-46; Лк. 22:39-46)

32 Унтан вĕсем Гефсимани текен вырăна пынă.
«Эпĕ кайса кĕлтунă вăхăтра çакăнтах ларăр-ха», –
тенĕ вĕренекенĕсене Иисус. 33 Вара Хăйпе пĕрле
Вăл Петра тата Иаковпа Иоана илсе кайнă та
калама çук вăйлăн хуйхăра пуçланă. 34 «Манăн
чунăм вилесле хурланать, эсир çакăнта Манпа
пĕрле пулăр-ха, ан çывăрăр», – тенĕ вĕсене Иисус.
35 Вара кăштах аяккалла пăрăннă та: «Май
пулсассăн, çак асап вăхăчĕ Манран иртинччĕ. Эй,
Авва Аттем! Эсĕ пурне те тума пултаратăн. Çак асап
куркине Манран ирттерсемччĕ. Çапах та Эпĕ тăвас
тенĕ пек мар, Эсĕ тăвас тенĕ пек пултăр», – тесе
çĕре ӳксе кĕлтунă. 37 Унтан вĕренекенĕсем патне
пынă та лешсем çывăрнине курнă. «Симон, эсĕ

çывăратăн-и? Пĕр сехет те пулин çывăрмасăр
тӳсеймерĕн-и? – тенĕ Петра. 38 – Илĕртнипе çылăха
кĕрес марччĕ тесе, сыхă пулăр, кĕлтăвăр: этемĕн
чун-чĕмĕ çирĕп, ӳт-пĕвĕ вара хавшак». 39 Унтан
Иисус, каллех пăрăнса, малтанхи пекех каласа
кĕлтунă. 40 Вĕренекенĕсем патне пырсан Вăл
лешсем каллех çывăрнине курнă. Ыйхă пуссах
çитернипе вĕсем Иисуса ним тавăрса калама та
аптăранă. 41 Унтан, виççĕмĕш хут кĕлтуса
тавăрăнсан, Иисус вĕренекенĕсене çапла каланă:
«Эсир çаплах çывăратăр-и, канатăр-и? Вăхăт çитрĕ
ĕнтĕ: акă Этем Ывăлне çылăхлă çынсен аллине
тытса параççĕ. 42 Тăрăр та каяр! Акă Мана сутакан та
çывăхрах».

*Иисуса тытни*

(Мф. 26:47-56; Лк. 22:47-53; Ин. 18:3-12)

43 Вăл çапла каласа тăнă вăхăтрах Вун
иккĕшĕнчен пĕри, Иуда, тата унпа пĕрле хĕçсемпе
шалçасем йăтнă темĕн чухлĕ халăх пырса çитнĕ.
Вĕсене аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем
тата ятлă-сумлă çынсем янă пулнă. 44 Сутаканĕ
вĕсемпе çапла калаçса татăлнă пулнă: «Эпĕ Кама
чуптăвăп, Çавă Иисус пулĕ. Эсир Ăна ярса тытăр та
хуралласа илсе кайăр». 45 Вăл çавăнтах Иисус патне
пынă та: «Равви! Равви!» – тесе Ăна чуптунă.
46 Лешсем вара, Ун çине алă çĕклеме хăйса, Ăна
ярса тытнă. 47 Çав вăхăтра Иисуспа пулнисенчен
пĕри хĕçне туртса кăларнă та, аслă священник чури
çине сулса ярса, унăн хăлхине касса татнă. 48 Çавăн
чухне Иисус Хăйне сырса илнисене каланă: «Мана
тытма эсир, вăрă-хураха хирĕç тухнă пек, хĕçсемпе,
шалçасемпе тухрăр. 49 Эпĕ кулленех Турă Çуртĕнче
сирĕнпе пултăм, вĕрентрĕм; ун чухне эсир Мана
тĕкĕнмерĕр. Çырнинче мĕн калани пурнăçлантăр,
тытăрах эппин». 50 Çавăн чухне Ăна пурте пăрахса
тарнă.
51 Çара ӳчĕ çинченех пĕркенчĕк уртса янă пĕр
темле çамрăк çеç Иисус хыççăн утнă, анчах
салтаксем ăна та ярса тытнă. 52 Вара çав çамрăк,
пĕркенчĕкне вĕсен аллинче хăварса, çарамассăнах
тарнă.

*Иисуса синедриона илсе пыни*

(Мф. 26:57-68; Лк. 22:54-55, 63-71; Ин. 18:13-14, 19-24)

53 Иисуса чи аслă священник патне илсе кайнă.
Вара çавăнта ытти аслă священниксемпе ятлă-
сумлă çынсем, саккун вĕрентӳçисем пухăннă.
54 Петр вара аслă священник çурчĕ патне
çитиччен Иисус хыççăн чылай каярахра утса
пынă. Картишне кĕрсессĕн вăл унти тарçăсемпе
пĕрле кăвайт умне ăшăнма ларнă. 55 Аслă
священниксем тата синедрионра ларакан ытти
çынсем, Иисуса вĕлерттерес тесе, Ăна судра
айăпламалли сăлтав шыранă, анчах тупайман. 56 Ун
çинчен нумайăшĕ суйса айăп кăтартнă, анчах
вĕсем кăтартнисем çителĕксĕр пулнă. 57 Хăшĕ-
пĕрисем ура çине тăрсах Ăна хирĕç çапла суйса
пĕлтернĕ: 58 «„Этем аллипе тунă çак Турă Çуртне
аркатма, унтан тепĕр виçĕ кунран урăххине, этем
аллипе туманнине, çĕнĕрен туса лартма
пултаратăп“, – тенине эпир хамăр илтрĕмĕр».
59 Анчах вĕсем çапла кăтартни те айăплама
çителĕксĕр пулнă. 60 Вара аслă священник мала
тухса тăнă та Иисусран ыйтнă: «Вĕсем Сана хирĕç
айăп кăтартаççĕ, Санăн тавăрса каламалли нимĕн
те çук-им?» 61 Иисус чĕнмен, хирĕç тавăрса нимĕн
те каламан. Аслă священник каллех ыйту панă.
«Эсĕ Христос-и? Мухтавлă Турă Ывăлĕ-и?» – тесе
ыйтнă Унран. 62 «Эпĕ, – тенĕ вара Иисус. – Ĕнтĕ эсир
Этем Ывăлĕ, Хăватлин сылтăм енче ларса, тӳпери
пĕлĕтсем çинче килнине курăр». 63 Çакна илтсен,
тарăхнипе, аслă священник хăй çийĕнчи тумтирне
çурса янă. «Унăн айăпне кăтартакан мĕн тума
кирлĕ тата пире? – тенĕ вăл. 64 – Вăл Турра
хурланине хăвăрах илтрĕр! Çакăн пирки эсир мĕн
шухăшлатăр?» «Айăплă, вĕлермелле», – тенĕ вара
вĕсем пурте. 65 Хăшĕ-пĕрисем Ун çине сура пуçланă,
Иисусăн питне хупласа, çапа-çапа каланă: «Пророк
пулсан кам çапнине кала!» Ăна тарçăсем те питрен
çупа-çупа янă.

*Петр Иисуса пĕлмĕш пулни*

(Мф. 26:69-75; Лк. 22:56-62; Ин. 18:15-18, 25-27)

66 Петр çав хушăра тулта, картишĕнче ларнă. Аслă
священникăн хĕрарăм тарçи, пырсан, 67 Петр
кăвайт умĕнче ăшăнса ларнине курнă. Вара ун
çине тинкererех пăхса çапла каланă: «Эсĕ те
Назаретри Иисуспа пĕрлехчĕ». 68 Анчах та Петр,
Иисусран тунса: «Эсĕ мĕн калаçнине пĕлместĕп те,
ăнланаймастăп та», – тенĕ. Вара малти картишне
тухнă, çавăнтах автан авăтса янă. 69 Хĕрарăм тарçă
ăна каллех асăрханă та çавăнта тăракансене: «Ку
çын çавсен ушкăнĕнченех», – тесе кала пуçланă.
70 Петр каллех туннă. Тепĕртакран çавăнта
тăракансем Петра татах çапла каланă: «Эсĕ чăнах
та çавсен ушкăнĕнченех. Мĕншĕн тесен эсĕ –
Галилея çынни, калаçни-туни те вĕсен евĕрлех».
71 Вăл вара пĕтĕм чĕререн: «Эсир калакан Çынна
эпĕ пĕлместĕпех», – тесе тупа тăва пуçланă. 72 Çав
самантрах автан иккĕмĕш хут авăтса янă. Петр
вара хăйне Иисус «автан иккĕ авăтма
ĕлкĕричченех эсĕ Мана виçĕ хутчен пĕлмĕш
пулăн» тенине аса илнĕ те йĕрсе янă.

*Иисус Пилат патĕнче*

(Мф. 27:1-2, 11-14; Лк. 23:1-5; Ин. 18:28-38)

15 Ирхине, тул çутăлсанах, аслă священниксем,
ятлă-сумлă çынсем, саккун вĕрентӳçисем –
синедрионра ларакансем пурте канашласа
йышăннипе Иисуса çыхса Пилат патне илсе кайнă.
2 «Эсĕ Иудея Патши-и?» – тесе ыйтнă Унран Пилат.
«Эсĕ ху çапла каларăн», – тавăрнă ăна Иисус. 3 Аслă
священниксем Ăна хирĕç тем тĕрлĕ айăплав та
кăларса тăратнă. 4 Вара Пилат каллех Унран çапла
ыйтнă: «Куратăн-и, Сана хирĕç мĕн чухлĕ айăплав
сăмахĕ калаççĕ. Эсĕ мĕншĕн нимĕн те чĕнместĕн?»
5 Анчах Иисус çакна хирĕç те нимĕн те тавăрса
каламан, ку вара Пилата тĕлĕнтерсех янă.

*Иисуса вĕлерме ыйтни*
(Мф. 27:15-26; Лк. 23:13-25; Ин. 18:39–19:16)
6 Кашни пасха уявĕ тĕлне вăл тĕрмере
ларакансенчен пĕрне халăх ыйтнипе ирĕке
кăларнă. 7 Çавăн чухне пĕр Варавва ятлă çын ытти
пăлхавçăсемпе пĕрле тĕрмере ларнă. Вĕсем пăлхав
вăхăтĕнче çын вĕлернĕ пулнă. 8 Халăх Пилатран
йăлана кĕнĕ йĕркене пурнăçлама кăшкăра-кăшкăра
ыйта пуçланă. 9 Пилат вĕсене çапла тавăрса каланă:
«Сире Иудея Патши текеннине кăларса парас мар-
и? Килĕшетĕр-и?» 10 Аслă священниксем Иисуса
курайман̆сăр тытса панине пĕлнĕрен Пилат çапла
ыйтнă. 11 Анчах аслă священниксем Иисус вырăнне
Вараввăна кăларма ыйтмашкăн халăха пăлхатса
янă. 12 Пилат каллех вĕсене тавăрса çапла каланă:
«Хăвăр Иудея Патши текеннине манăн мĕн тумалла
вара?» 13 Вĕсем каллех кăшкăра пуçланă.
«Пăталаттар Ăна!» – кăшкăрнă вĕсем çаплах.
14 «Мĕн усалли тунă вара Вăл?» – тенĕ Пилат вĕсене.
Анчах та халăх тата хытăрах: «Пăталаттар Ăна!» –
тесе кăшкăрнă. 15 Вара Пилат, халăх кăмăлне юрас
тесе, Вараввăна тĕрмерен кăларттарнă, Иисуса, чĕн
пушăпа хĕнеттерсе, пăталама хушнă.

*Иисусран мăшкăлласа кулни*
(Мф. 27:27-31; Ин. 19:2-3)
16 Салтаксем Ăна претори картишне илсе кĕртнĕ
те унта пулккипех ытти салтаксене пухнă. 17 Вара
Ăна патшалла хĕрлĕ тум тăхăнтартнă, Ун пуçне
йĕплĕ кӳкен хуллинчен явнă пуç кăшăлĕ
тăхăнтартнă. 18 Вара Ăна хисепленçи пулса: «Сывă
пултăр Иудея Патши!» – тесе саламлама пуçланă.
19 Салтаксем Иисус çине сура-сура Ăна пуçĕнчен
туяпа çапса пĕтернĕ, Ун умне чĕркуçленсе ларса
пуç тайнă пек хăтланнă. 20 Унтан, мăшкăлласа
тăрансан, Ун çийĕнчи хĕрлĕ тумне хывса илнĕ те
Хăйĕн тумтирне тăхăнтартнă. Вара Ăна пăталама
илсе кайнă.

*Иисус Христоса пăталани*
(Мф. 27:32-44; Лк. 23:26-43; Ин. 19:17-27)
21 Çул çинче вĕсем хиртен тавăрăнакан Симон
ятлă Киринея çыннине, Александрпа Руф ашшĕне,
тĕл пулнă, Иисусăн хĕресне йăтса пыма çавна
хушнă. 22 Иисуса Голгофа ятлă вырăна илсе пынă, ку
«Пуç купташки» тенине пĕлтерет. 23 Вара Ăна
смирнăпа хутăштарнă хĕрлĕ эрех ĕçтересшĕн
пулнă, анчах Вăл ĕçмен. 24 Иисуса пăталакансем
Унăн тумтирне шăпа ярса пĕр-пĕрин хушшинче
валеçнĕ. 25 Ирхине тăхăр сехетре Иисуса хĕрес
çумне пăталанă. 26 Унăн айăпне кăтартса «Иудея
Патши» тесе çырса çапнă. 27 Унпа пĕрле икĕ хураха
пăталанă: пĕрне – унран сылтăм енне, теприне –
сулахай енне. 28 Çапла «Ăна вăрă-хурах шутне
кĕртĕç» тесе Çырнинче калани пурнăçланнă .
29 Иртен-çӳренсем Ăна хурласа, пуçĕсене сулла-
сулла çапла калаçкаланă: «Ай-яй, Турă Çуртне
аркатакан, ăна виçĕ кун хушшинче çĕнĕрен туса
лартакан! 30 Халĕ Хăвна Ху çăлсам, хĕрес çинчен
анса пăх-ха!» 31 Аслă священниксемпе саккун
вĕрентӳçисем те çавнашкалах Унран мăшкăлланă.
Пĕр-пĕрин хушшинче çапла калаçкаланă:
«Ыттисене çăлатчĕ, Хăйне Хăй çăлаймасть! 32 Ĕнтĕ
Христос, Израиль Патши текенскер, халĕ хĕрес
çинчен антăр, эпир çакна курăпăр та вара Ăна
ĕненме пуçлăпăр». Хăйĕнпе пĕрле пăталанисем те
Унран йĕкĕлтесе кулнă.

*Иисус Христос вилĕмĕ*
(Мф. 27:45-56; Лк. 23:44-49; Ин. 19:28-30)
33 Кăнтăрла, вун икĕ сехетрен пуçласа виçĕ
сехетчен, сасартăк пĕтĕм çĕр çинче сĕм тĕттĕм
пулса ларнă. 34 Виçĕ сехетре вара Иисус хыттăн
кăшкăрса янă: «Элои! Элои! Ламма савахфани?» Ку
«Эй, Турăçăм! Турăçăм! Мĕншĕн Эсĕ Мана
пăрахрăн?» тени пулать. 35 Çакна илтсен: «Вăл
Илияна пулăшма чĕнет», – тенĕ çавăнта
тăракансенчен хăшĕ-пĕри. 36 Пĕри тата чупса кайнă
та, хĕрхӳлентернĕ хĕрлĕ эрех сăхтарнă мунчалана
патак вĕçне тирсе, Иисуса ĕçме панă. «Тăхтăр-ха,
пăхса тăрар: Илия Ăна хĕрес çинчен антарма килет-
и?» – тенĕ çавскер. 37 Унтан Иисус хыттăн кăшкăрса
янă та, Унăн юлашки сывлăшĕ тухнă. 38 Çав вăхăтра
Турă Çуртĕнчи чаршав çӳлтен аяла çитиччен
çурмалла çурăлса аннă. 39 Иисуса хирĕçех тăракан
Рим çĕрпĕвĕ вара, Иисус çапла кăшкăрса юлашки
сывлăшне кăларса янине курса: «Ку Çын чăнах та
Турă Ывăлĕ пулнă-мĕн!» – тенĕ. 40 Çавăнтах аякран
пăхса тăракан хĕрарăмсем те пулнă: вĕсем
хушшинче Мария Магдалина та, кĕçĕн Иаковпа
Иосия амăшĕ Мария та, Саломия та пулнă. 41 Вĕсем
Иисус Галилейăра чухне те Ун хыççăн çӳренĕ, Ăна
пулăшнă. Унта тата Иисуспа пĕрле Иерусалима
пынă ытти хĕрарăмсем те нумайăн пулнă.

*Иисус ӳтне тупăклăха хуни*
(Мф. 27:57-61; Лк. 23:50-56; Ин. 19:38-42)
42 Çакă эрне кун пулса иртнĕ, шăмат кун вара
ĕçлеме юраман. Çавăнпа та, кас пулсан,
43 Аримафея хулинче çуралса ӳснĕ Иосиф ятлă пĕр
çын пынă та Иисус ӳтне ыйтма Пилат патне хăйса
кĕнĕ. Иосиф иудейсен канашĕнче хисеплĕ çын
шутланнă пулин те, хăй те Турă Патшалăхĕ килессе
кĕтсе пурăннă пулнă. 44 Иисус вилнĕ ĕнтĕ тесен
Пилат тĕлĕннĕ. Вара вăл çĕрпĕве чĕнтерсе: «Иисус
вилни нумай пулать-и?» – тесе ыйтнă. 45 Иисус
вилнине çĕрпӳ те пĕлтерсен, Пилат Унăн ӳтне
Иосифа пама хушнă. 46 Вара Иосиф йĕтĕн пир
туяннă та Иисус ӳтне хĕрес çинчен антарнă. Унтан
пирпе чĕркенĕ те чул ту хысакне касса тунă
тупăклăха кайса хунă, шала кĕмелли шăтăк умне
чул йăвантарса хунă. 47 Мария Магдалинăпа Иосия
Марийи Ăна ăçта пытарнине пăхса тăнă.

*Иисус Христос чĕрĕлсе тăни*
(Мф. 28:1-8; Лк. 24:1-12; Ин. 20:1-10)
16 Шăмат кас Мария Магдалина, Иаков амăшĕ
Мария тата Саломия, Иисус ӳтне кайса сĕрес
тесе, ырă шăршăллă çусем туяннă. 2 Вырсарни кун,
эрнен малтанхи кунĕнче, ирпе ирех, хĕвел тухнă
вăхăтра, вĕсем тупăклăх патне кайнă. 3 Çапла
вĕсем: «Тупăклăх шăтăкĕ умĕнчи чула кам
йăвантарса куçарса парĕ-ши пире?» – тесе пĕр-

пĕринпе калаҫкаласа пынă. 4 Ҫитсессĕн пăхнă та
курах кайнă: хайхи пысăк чула куҫарса та хунă
иккен. 5 Унтан, тупăклăха кĕрсен, вĕсем сылтăм
енче шап-шурă тум тăхăннă пĕр ҫамрăк ларнине
асăрханă. Вара хĕрарăмсем тĕлĕннипе питĕ хăраса
ӳкнĕ. 6 «Ан хăрăр, – тенĕ ангел вĕсене. – Эсир хĕрес
ҫине пăталанă Назаретри Иисуса шыратăр вĕт. Вăл
вилĕмрен чĕрĕлнĕ. Вăл кунта ҫук халĕ. Акă Ăна
хунă вырăн. 7 Ҫапах та эсир Унăн вĕренекенĕсене
тата Петра: „Иисус сире Хăй каланă пекех
Галилейăра тĕл пулĕ, эсир Ăна унта курăр“, – тесе
кайса калăр». 8 Вара вĕсем тупăклăхран тухса
тарнă, тĕлĕннипе питĕ хăраса ӳкнĕ. Хăранăран
вара никама та ним те каламан.

*Чĕрĕлсе тăнă Христос Мария Магдалинăна тата икĕ вĕренекенне курăнни*

(Мф. 28:9-10; Лк. 24:13-35; Ин. 20:11-18)

9 Эрнен малтанхи кунĕнче, вырсарни кун, ирпе
ирех чĕрĕлсе тăнă хыҫҫăн Иисус чи малтан Хăй
унччен ҫичĕ усал сывлăша хăваласа кăларнă
Мария Магдалинăна курăннă. 10 Мария ҫакăн
ҫинчен Иисуспа пĕрле пулнисене, татăлса
йĕрекенскерсене, кайса каласа кăтартнă. 11 Анчах
та вĕсем Иисус чĕрĕ пулнине те, Мария Ăна
курнине те ĕненмен. 12 Кайран Иисус ҫав
ĕненменнисенчен иккĕшне, вĕсем пĕр яла кайнă
чухне, ҫул ҫинче урăх сăн-сăпатлă пулса курăннă.
13 Вара хайхисем каялла таврăннă та ыттисене
каласа кăтартнă, анчах вĕсене те ĕненмен.

*Чĕрĕлсе тăнă Иисус вун пĕр апостола курăнни*

(Мф. 28:16-20; Лк. 24:36-49; Ин. 20:19-23; Ĕҫ-хĕл. 1:6-8)

14 Юлашкинчен Иисус вун пĕр вĕренекенне каҫхи
апат ҫисе ларнă чухне курăннă. Иисус вĕсене
чунĕсем усăлса ҫитейменшĕн, Хăй чĕрĕлсе тăнă
хыҫҫăн Ăна куракансене ĕненменшĕн ӳпкеленĕ.
15 Унтан Иисус вĕсене ҫапла каланă: «Кайăр та
пĕтĕм тĕнчипех пурне те Ырă Хыпар вĕрентсе
ҫӳрĕр. 16 Кам ĕненсе шыва кĕрĕ, ҫав ҫăлăнĕ. Кам
ĕненмĕ, ҫавна юлашки судра айăплĕҫ.
17 Ĕненекенсем ҫак хăватсене тума пултарĕҫ: Ман
ятăмпа усалсене хăваласа кăларĕҫ; хăйсем
халиччен пĕлмен чĕлхесемпе калаҫĕҫ; 18 ҫĕленсене
алла тытĕҫ; пĕр-пĕр наркăмăш ĕҫсен те
сиенленмĕҫ; чирлисем ҫине аллисене хурсан,
лешсем сывалĕҫ».

*Иисус Христос тӳпене ҫĕкленни*

(Лк. 24:50-53; Ĕҫ-хĕл. 1:9-11)

19 Ҫапла Хуҫамăр, вĕренекенĕсемпе калаҫнă
хыҫҫăн, тӳпене ҫĕкленнĕ те Туррăн сылтăм енне
ларнă. 20 Вара вĕренекенĕсем кайнă та пур ҫĕрте те
ӳкĕтлесе вĕрентнĕ; Хуҫамăр вĕсене пулăшсах тăнă,
хăватсем кăтартса вĕсен сăмахĕсене ҫирĕплетнĕ.
Аминь .

# Лука

### Ум сăмах

1 Пирĕн хушшăмăрта пулса иртнĕ паллă ĕçсем
çинчен халĕ нумайăшĕ çыра пуçларĕç ĕнтĕ.
2 Сăмаха чăн малтанах куçăн курса Уншăн ĕçлесе
тăнă çынсем пире мĕн каласа панă, вĕсем те çавнах
çыраççĕ. 3 Çавăнпа эпĕ те, хисеплĕ çыннăм Феофил,
малтан пуçласа пĕтĕмпе лайăх тĕпчесе пĕлтĕм те
ун çинчен сана йĕркипе çырса парас терĕм. 4 Хăвна
мĕне вĕрентни чăннипех те тĕрĕс пулнине санăн
тĕппипе пĕлсе çитмелле пултăр терĕм.

### Ангел Шыва кĕртекен Иоанн çураласса пĕлтерни

5 Иудея çĕрĕнче Ирод патшара ларнă чух пĕр
Захария ятлă священник пурăннă, вăл Авий
ушкăнĕнчи священниксен черечĕпе Турă Çуртĕнче
ĕçленĕ. Унăн арăмĕ те, Елисавета, Аарон ăрăвĕнчен
тухнăскер пулнă. 6 Вĕсем Турă умĕнче тӳрĕ пурăннă:
Хуçа Турă йĕркисене, пил-хушăвĕсене пурне те
тĕрĕс пурнăçласа тăнă. 7 Анчах та вĕсен ача-пăча
пулман, мĕншĕн тесен Елисавета ача туман арăм
пулнă. Иккĕшĕ те вĕсем ватăлса çитнĕ.
8 Пĕррехинче, Захария хăй черечĕн йĕркипе Турă
умĕнче ĕçленĕ чухне, священниксен йăлипе Хуçа
Турă Çуртĕнче ладан çунтарса тĕтĕрме ăна шăпа
тухнă. 10 Захария тĕтĕрнĕ вăхăтра темĕн чухлĕ
халăх Çурт тулашĕнче кĕлтуса тăнă. 11 Çавăн чухне
ăна ладан çунтаракан парне вырăнĕн сылтăм енче
сасартăк Хуçа Туррăн ангелĕ курăннă. 12 Ангела
курсан Захария тĕлĕннипе хăрасах кайнă. 13 Ангел
ăна каланă: «Ан хăра, Захария! Санăн кĕллӳне Турă
илтрĕ. Санăн арăму, Елисавета, сана ывăл ача
çуратса парĕ, ăна эсĕ Иоанн ятлă хурăн. 14 Уншăн
эсĕ хавасланса хĕпĕртĕн, вăл çуралнăшăн
нумайăшĕ савăнĕç, 15 мĕншĕн тесен вăл Хуçа Турă
умĕнче аслă пулĕ. Вăл эрех-сăра таврашĕ ĕçмĕ;
амăш варĕнчех унăн чун-чĕри Святой Сывлăшпа
тулĕ. 16 Вăл Израиль çыннисене нумайăшне хăйсен
Хуçа Турри енне çавăрĕ. 17 Вăл Христос умĕн Илиян
чун-чĕм хăвачĕпе килĕ те халăха Хуçамăр умне
тăма хатĕрлĕ: ашшĕсен кăмăлне ачисен енне
çавăрĕ, Турă хушнине итлемен çынсене тӳрĕлĕх
çулĕ çине тăратĕ». 18 Захария вара ангелран çапла
ыйтнă: «Ку чăн пуласса эпĕ епле пĕлĕп-ши? Эпĕ
ĕнтĕ ватăлтăм, ман арăм та ватăлса çитрĕ». 19 Ангел
ăна каланă: «Эпĕ – Турă умĕнче тăракан Гавриил.
Мана сан патна çак ырă хыпара пĕлтерме янă.
20 Вăхăчĕ çитсен эп калани пурнăçланĕ, анчах ман
сăмахсене ĕненменшĕн эсĕ чĕлхесĕр пулăн, эпĕ
калани пурнăçланиччен калаçаймасăр пурăнăн».
21 Çав хушăра унти халăх Захария тухасса кĕтсе
тăнă, вăл Турă Çуртĕнче вăрах тăнинчен тĕлĕннĕ.
22 Унтан тухсан Захария пĕр сăмах та калайман,
аллисемпе паллă кăтартса халăха тем ăнлантарма
тăрăшнă. Вара пурте ăна Турă Çуртĕнче темскер
курăннине чухласа илнĕ. 23 Турă умĕнче ĕçлемелли
кунĕсем иртсен Захария килне таврăннă.
24 Çавăн хыççăн унăн арăмĕ, Елисавета, йывăр
çын пулнă. Çие юлнине вăл пилĕк уйăх
палăртмасăр çӳренĕ. «Çын хурланине ман çинчен
сирес тесе, çак кунсенче Хуçа Турă мана хĕрхенсе
çапла турĕ», – тенĕ вăл.

### Ангел Марияна ырă хыпар пĕлтерни

26 Çие юлни ултă уйăх çитсен, Турă татах Гавриил
ангела Галилейăри Назарет хулине 27 Давид
йăхĕнчи Иосиф валли çураçнă Хĕр патне янă. Çав
Хĕр Мария ятлă пулнă. 28 Ун патне кĕрсен ангел
çапла каланă: «Эй, тивлетлĕ Хĕр, савăн! Санпала
Турă, Эсĕ пур хĕрарăмран та мухтавлăрах!» 29 Ангел
сăмахĕсене илтсен Мария аптăрасах кайнă. Çапла
ырă сунса саламлани мĕне пĕлтерет-ши тесе
шухăшланă. 30 Ангел Ăна каланă: «Ан хăра, Мария!
Эсĕ Турăран ырăлăх илтĕн. 31 Акă Эсĕ йывăр çын
пулса Ывăл Ача çуратăн, Ăна Иисус ятлă хурăн.
32 Вăл аслă пулĕ, Ăна Çӳлти Туррăн Ывăлĕ тесе
калĕç. Хуçа Турă Ăна мăн аслашшĕн, Давидăн,
престолне парĕ. 33 Вăл ĕмĕр-ĕмĕр Иаков йăхĕн
Патши пулĕ, Унăн Патшалăхĕ нихăçан та пĕтмĕ».
34 Мария вара ангелран ыйтнă: «Ку епле пулма
пултарĕ-ши? Эпĕ халĕ качча та кайман-çке?»
35 Ангел Ăна каланă: «Сан çине Святой Сывлăш анĕ,
сана Çӳлти Туррăн хăвачĕ витсе тăрĕ, çавăнпа
çуралас таса Ачуна та Турă Ывăлĕ тейĕç. 36 Акă
санăн тăвану Елисавета та ватлăхра ывăл çуратĕ.
Ун çинчен пурте ача тăвайманскер тесе калаçатчĕç,
вăл йывăр çын пулни улттăмĕш уйăх ĕнтĕ.
37 Мĕншĕн тесен Туррăн пĕр сăмахĕ те
пурнăçланмасăр юлмасть». 38 «Эпĕ – Хуçа Туррăн
Чури, – тенĕ Мария, – эппин пĕтĕмпех эсĕ каланă
пек пултăр». Ангел вара Ун патĕнчен кайнă.

### Мария Елисаветăна курма кайни

39 Тепĕр темиçе кунран Мария çула хатĕрленнĕ те
сăртлă Иудейăри хулана васкаса кайнă. 40 Захария
кил-çуртне кĕрсен вăл Елисаветăна сывлăх суннă.

41 Мария саламланине илтсен Елисаветăн варĕнчи
ачи тапкалашса илнĕ, вара Елисавета чун-чĕри
Святой Сывлăшпа тулнă. 42 Вăл хытă сасăпа каланă:
«Эсĕ пур хĕрарăмран та мухтавлăрах! Санран
çуралас Ачу та мухтавлă! 43 Хуçа Туррăмăн Амăшĕ
ман патăма килнине курма епле тивĕçлĕ пултăм-
ши? 44 Эсĕ сывлăх суннине илтсенех ман ăшăмри
ача савăннипе тапкалашса илчĕ! 45 Хуçа Турă
сăмахĕ пурнăçланасса ĕненнĕшĕн Эсĕ телейлĕ!»

### Мария Турра мухтани

46 Вара Мария çапла каланă: «Манăн чунăм
Хуçамăра аслăлать, 47 Манăн кăмăлăм Çăлакан
Туррăмшăн савăнать, 48 мĕншĕн тесен Вăл Хăйĕн
Чурин йăвашлăхне асăрхарĕ. Паянтан Мана пур
халăхсем те мухтĕç. 49 Хăватлă Турă Маншăн аслă ĕç
турĕ, Унăн ячĕ таса. 50 Хăйне хисеплесе
хăракансене Вăл ăруран ăрăва ырлăх парса
тăрать. 51 Шухăш-туйăмпа мăн кăмăллисене Вăл
хăватлă аллипе салатса ячĕ, 52 вăйлисене
престолĕсем çинчен сирпĕтсе антарчĕ,
йăвашшисене асла кăларчĕ, 53 выçăхнисене ырлăх
пачĕ, пуйнисене нимĕнсĕрех хăварчĕ. 54 Пирĕн мăн
асаттесене, Авраама тата унăн йăхне Вăл
ĕмĕрлĕхех ырлăх парасса шантарнă. Çавна асра
тытса Вăл Израиль халăхне, Хăйĕн тарçине,
пулăшрĕ».
56 Виçĕ уйăха яхăн Елисавета патĕнче пурăнсан
Мария килне таврăннă.

### Шыва кĕртекен Иоанн çурални

57 Çăмăлланас вăхăчĕ çитсен Елисавета ывăл ача
çуратнă. 58 Кӳршисемпе тăванĕсем ун çинчен илтнĕ
те Хуçамăр çав тĕрлĕ пысăк ырлăх панăшăн
Елисаветăпа пĕрле савăннă. 59 Саккăрмĕш кунне
вĕсем хăйсен йăлипе ача ӳтне касма илсе пынă,
вара ăна ашшĕ ячĕпе Захария ятлă хурасшăн
пулнă. 60 Анчах та амăшĕ: «Çук, ăна Иоанн ятлă
хурар», – тенĕ. 61 «Сирĕн йăхăрта ун ятли никам та
çук-çке!» – тенĕ ăна ыттисем. 62 Унтан вĕсем,
аллисемпе паллă кăтартса, ывăлне мĕн ятлă хурас
килнине ашшĕнчен ыйтнă. 63 Захария хăма татăкĕ
ыйтса илнĕ те: «Унăн ячĕ – Иоанн», – тесе çырса
панă. Çавна курсан пурте тĕлĕннĕ. 64 Çав самантрах
унăн чĕлхи-çăварĕ уçăлнă, вара вăл сасăпах Турра
мухтама пуçланă. 65 Унта пурăнакан пĕтĕм халăх
хăраса ӳкнĕ. Мĕн пулса иртни çинчен сăртлă
Иудейăра пур çĕрте те калаçнă. 66 «Ку ача кам пулĕ-
ши?» – тесе тĕлĕнсе шухăшланă çав хыпара илтнĕ
çынсем пурте. Чăн та, унра Хуçа Турă хăвачĕ пулнă.

### Захария пророкла калани

67 Иоанн ашшĕ Захария чун-чĕри Святой
Сывлăшпа тулнăран пророкла калама пуçланă:
68 «Израилĕн Хуçа Туррине мухтав! Вăл килсе Хăйĕн
халăхне хăтăлмалла турĕ; 69 Вăл Хăйĕн тарçи Давид
йăхĕнчен пире валли хăватлă Çăлакан кăларчĕ.
70 Вăл Хăйĕн авалхи сăваплă пророкĕсем урлă
каласа пĕлтернĕ пекех, 71 пире тăшмансенчен те,
хамăра курайман мĕн пур çынсенчен те çăлса
хăварĕ. 72 Вăл пирĕн мăн асаттесене ырлăх пама
пулнă. Вăл Хăйĕн таса халалне, 73 мăн асаттемĕре
Авраама тупа тунине яланах асра тытма пулнă.
74 Ĕнтĕ эпир, тăшмансен аллинчен хăтăлсан, хамăр
пурăнас кунсенче хăрамасăр Уншăн ĕçлесе
тăрăпăр, Ун умĕнче сăваплă, тӳрĕлĕхлĕ пулăпăр.
76 Сана та, ачам, Çӳлти Туррăн пророкĕ тесе калĕç,
мĕншĕн тесен эсĕ Хуçамăр валли çул хатĕрлеме Ун
умĕнчен пырăн. 77 Çылăхсене каçарса çăлăнасси
çинчен те эсĕ Унăн халăхне каласа ăнлантарăн.
78 Ырă кăмăллă та хĕрхенӳллĕ Туррăмăр тĕттĕмре,
вилĕм тыткăнĕнче пурăнакансене çутатма,
канăçлăх çулне кăтартма пирĕн пата çӳлтен
Шурăмпуç çути ячĕ».
80 Ача çитĕнсе, чун-чĕмĕпе çирĕпленсе пынă.
Израиль халăхĕ умне тухма вăхăчĕ çитиччен вăл
пуш хирте пурăннă.

### Иисус Христос çурални

2 Çав вăхăтра Рим императорĕ Август пĕтĕм
патшалăхри халăха çырса тухма хушнă. 2 Çак
пирвайхи хут халăха шута илесси Сири çĕрне
Квириний тытса тăнă чухне пулнă. 3 Вара пурте
кашни хăйĕн хулине çырăнма тухса кайнă.
4 Иосифăн, Давид йăхĕнчен пулнăран, Галилейăри
Назарет хулинчен Иудейăри Вифлеема, тахçан
Давид çуралнă хулана, каймалла пулнă. 5 Çапла
Иосиф хăйĕн çураçнă хĕрĕпе Марияпа пĕрле ят
çыртарма кайнă. Мария ун чухне йывăр çын пулнă.
6 Вифлеемре Унăн çăмăлланас вăхăчĕ çитнĕ. 7 Вара
Мария Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне çуратнă. Хăна
çуртĕнче вырăн пулманран Вăл Ăна, чĕркесе,
выльăх-чĕрлĕхе апат памалли сырăша вырттарнă.

### Кĕтӳçĕсем тата ангел

8 Çавăнтан аякра мар, хирте, кĕтӳçĕсем çĕрле
кĕтĕвĕсене хуралланă. 9 Сасартăк вĕсен умне Хуçа
Туррăмăрăн ангелĕ пырса тăнă та, вĕсене Хуçа
Туррăн мухтавлăхĕ çутатса янă. Кĕтӳçĕсем çав тери
хăраса ӳкнĕ. 10 Ангел вĕсене çапла каланă: «Ан
хăрăр! Эпĕ сире пĕтĕм халăха савăнтармалли чаплă
хыпар пĕлтерме килтĕм. 11 Паян Давид хулинче
сире Çăлакан çуралчĕ, Вăл – Христос Хуçамăр! 12 Акă
сире паллă: эсир сырăша чĕркесе вырттарнă Ачана
курăр».
13 Унтан сасартăк çав ангелпа пĕрле тӳпери
ангелсен йышлă çарĕ курăнса кайнă. Вĕсем Турра
мухтаса юрланă: 14 «Çӳлте Турра мухтав, çĕр çине
канăçлăх килчĕ, çынсене ырлăх çитрĕ!»
15 Ангелсем тӳпене çĕкленсе кайсан кĕтӳçĕсем
пĕр-пĕрне каланă: «Атьăр Вифлеема кайса унта
мĕн пулнине, Хуçа Турă пире мĕн пĕлтернине
курар». 16 Вара вĕсем васкаса Вифлеема çитнĕ те
Марияпа Иосифа тата сырăшра выртакан пĕчĕк

Ачана шыраса тупнă. 17 Ачана курнă хыççăн
кĕтӳçĕсем хăйсене Çак Ача пирки мĕн хыпарланине
каласа панă. 18 Итлекенсем пурте кĕтӳçĕсем каласа
кăтартнинчен тĕлĕннĕ. 19 Мария вара çак
сăмахсене пурне те Хăйĕн чĕринчех усранă.
20 Йăлтах ангел каланă пек пулса иртнĕ. Çавна
курма-илтме тӳр килнишĕн Турра аслăласа та
мухтаса кĕтӳçĕсем хăйсен кĕтĕвĕ патне таврăннă.
21 Тепĕр сакăр кунран, Ача ӳтне касма вăхăт
çитсен, Амăшне йывăр çын пуличчен ангел каланă
пекех, Ăна Иисус ятлă хунă.

### Иисуса Турă Çуртне илсе пыни

22 Моисей саккунĕ хушнă тăрăх тасалмалли
кунсем иртсен, Иосифпа Мария пĕчĕк Ачана Хуçа
Турă умне тăратма Иерусалима илсе пынă,
23 мĕншĕн тесен Хуçамăр саккунĕ çапла калать:
«Малтанхи ывăл ачана, вар уçнăскере, Хуçа Турра
халалламалла». 24 Çавăн пекех, Хуçамăр саккунĕпе
килĕшӳллĕн, вĕсен икĕ улатăпа кайăкĕ е икĕ
кăвакарчăн чĕппи парне кӳмелле пулнă.
25 Çав вăхăтра Иерусалим хулинче тӳрĕ
пурăнакан, Турра пит хисеплекен Симеон ятлă пĕр
çын пурăннă. Ун çинче Святой Сывлăш пулнă,
Симеон Израиль халăхне çăлăнăç килессе кĕтнĕ.
26 Хуçа Туррăн Христосне курмасăр вилместĕн тесе
ăна Святой Сывлăш малтанах систернĕ пулнă.
27 Иосифпа Мария саккун хушнă йăлана тума
пĕчĕкçĕ Иисуса Турă Çуртне илсе пырсан, Сывлăш
хавхалантарнипе Симеон та унта пынă.

### Симеон Турра мухтани

28 Вăл Ачана хăй аллине илнĕ те Турра мухтаса
каланă: 29 «Эй, Туррăм! Халĕ ĕнтĕ мана, Хăвăн
чуруна, Ху каланă пек, лăплантарса яратăн: 30 ман
куçăмсем Санран çăлăнăç илсе килекене курчĕç.
31 Ку çăлăнăçа Эсĕ мĕн пур халăх куçĕ умĕнчех
хатĕрленĕ. 32 Урăх халăхсемшĕн вăл чăн çутă пулĕ,
Хăвăн Израиль халăхне мухтава кăларĕ».
33 Иосифпа Ачан Амăшĕ Ун çинчен Симеон çапла
каланине илтсен тĕлĕннĕ. 34 Унтан Симеон вĕсене
пилленĕ те, Ача Амăшне Марияна каланă: «Мария,
Сан чуну хĕçпе каснă пек касăлĕ, мĕншĕн тесен ку
Ачана пула Израильте ӳкекен те, тăракан та нумай
пулĕ. Ун пирки нумай тавлашĕç, чылайăшĕ ăна
хирĕç тăрĕç, çапла вĕсен чун-чĕринчи вăрттăн
шухăшĕсем палăрĕç».

### Хĕрарăм пророк Анна

36 Унта тата Асир ăрăвĕнчен тухнă Фануил хĕрĕ,
Анна ятлă хĕрарăм пророк пулнă. Вăл питĕ ватăлса
çитнĕ, хăйĕн упăшкипе Анна çичĕ çул анчах
пурăннă. 37 Çав сакăр вун тăватă çулхи упăшкасăр
карчăк Турă Çуртĕнчен кайманпа пĕрех. Вăл, Турра
хисеплесе, тăтăшах типĕ тытнă, кунĕн-çĕрĕн
кĕлтунă. 38 Симеон Марияпа калаçнă вăхăтра вĕсем
патне пынă Анна та Хуçамăра мухтама пуçланă.
Çăлăнасса кĕтекен Иерусалимри çынсене пурне те
вăл Ача çинчен каласа кăтартнă.

### Назарета таврăнни

39 Турă саккунĕ хушнине пурне те туса пĕтерсен
Иосифпа Мария Галилейăна, Назарет ятлă тăван
хулине, таврăннă. 40 Ача çитĕннĕçемĕн чун-чĕмĕпе
çирĕпленсе, ăс-тăнĕпе хăватланса пынă. Турă
тивлечĕ Ун çинче пулнă.

### Иисус Турă Çуртĕнче

41 Унăн ашшĕ-амăшĕ кашни çулах пасха уявне
Иерусалима çӳренĕ. 42 Иисус вун икĕ çула çитсен,
вĕсем çав йăлапа Иерусалима уява пынă. 43 Уяв
хыççăн Иосифпа Унăн Амăшĕ киле кайма çула
тухнă, анчах Ачи, Иисус, Иерусалимра тăрса
юлнине вĕсем асăрхаман. 44 Вăл урăх çынсемпе
пырать пулĕ тесе, пĕр куна яхăн кайсан тин Ăна
хурăнташĕсемпе пĕлĕшĕсем хушшинче шырама
пуçланă. 45 Анчах та Иисуса тупайман пирки, Ăна
шыраса, вĕсем каллех Иерусалима таврăннă.
46 Виçĕ кунран тин вĕсем Иисуса Турă Çуртĕнче
тупнă. Вăл унта вĕрентекенсене итлесе ларнă, Хăй
те вĕсене ыйтусем панă. 47 Ăна итлекенсем пурте Ун
ăсĕнчен те, хуравĕсенчен те тĕлĕннĕ. 48 Иисуса унта
курсан Иосифпа Мария питĕ тĕлĕнсе кайнă. Вара
Амăшĕ Унран çапла ыйтнă: «Ывăлăм, мĕншĕн Эсĕ
капла хăтлантăн? Аçупа иксĕмĕр Сана шыраса йăлт
кулянса пĕтрĕмĕр». 49 Иисус вĕсене каланă: «Эсир
Мана мĕншĕн шырарăр? Эпĕ Хамăн Аттеме тивĕçлĕ
çĕрте пулмаллине пĕлмен-и-мĕн эсир?»
50 Иисус мĕншĕн çапла каланине вĕсем ăнланса
илеймен. 51 Вара Иисус вĕсемпе пĕрле Назарета
таврăннă та ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртмесĕр
пурăннă. Амăшĕ вара çак сăмахсене пурне те
чунĕнче упраса пурăннă. 52 Иисус ăслăлансах, ӳссех
пынă. Турă та, çынсем те Ăна юратнăçемĕн ытларах
юратнă.

### *Шыва кĕртекен Иоанн вĕрентсе калани*

(Мф. 3:1-12; Мк. 1:1-8; Ин. 1:19-28)

3 Тиверий императора ларни вун пилĕк çула
кайнă. Иудейăра Понтий Пилат пуçлăхра
ларнă, Галилея çĕрĕнче – Ирод, Итурейăпа
Трахонит çĕрĕнче – унăн пиччĕшĕ Филипп,
Авилинея çĕрĕнче – Лисаний. 2 Аннапа Каиафа ун
чухне аслă священниксем пулнă. Çавăн чух
Захария ывăлне, Иоана, пуш хирте Турă сăмахĕ
илтĕннĕ. 3 Иоанн вара Иордан шывĕ таврашĕнче,
пур çĕрте те, çылăхсене каçарттармашкăн ӳкĕнсе
шыва кĕме ӳкĕтленĕ. 4 Ун çинчен Исаия пророк
кĕнекинче çапла çырнă: «Пуш хирте чĕнекенĕн
сасси илтĕнет: „Хуçамăр валли çул хатĕрлĕр, Вăл
утас çулсене тӳрлетĕр! 5 Мĕн пур айлăм вырăнсем
тулччăр, мĕн пур тусемпе сăртсем çĕрпе
танлашчăр. Кукăр çулсем тӳрĕленччĕр, тикĕс
маррисем те – тикĕсленччĕр, 6 вара пĕтĕм этемлĕх
Турă панă çăлăнăçа курĕ!“»

7 Иоанн хăй патне шыва кĕме пыракан халăха
çапла каланă: «Эй, çĕлен çурисем! Çитес çилĕрен
тарса хăтăлма кам вĕрентрĕ сире? 8 Эппин хăвăр
çылăхран ўкĕннине тивĕçлĕ ĕçпе çирĕплетсех
тăрăр. „Пирĕн мăн асатте – Авраам!“ – текен
шухăшпа киленсе ан пурăнăр. Калатăп сире: Турă
çак чулсенчен те Авраам ачисем тума пултарать.
9 Акă пуртă та йывăç тымарĕ çумĕнчех выртать.
Ырă çимĕç кўмен кирек епле йывăçа та касса вута
пăрахаççĕ».
10 «Пирĕн мĕн тумалла ĕнтĕ?» – тесе ыйтнă унран
халăх. 11 Иоанн хирĕç çапла тавăрнă: «Камăн икĕ
тумтир пур, пĕрне чухăна патăр. Камăн çимелли
пур, вăл та çаплах тутăр». 12 Налук пухакансем те
Иоанн патне шыва кĕме пынă. Вĕсем унран ыйтнă:
«Вĕрентекен, пирĕн мĕн тумалла-ши?» 13 Иоанн
вĕсене каланă: «Хăвăра илме хушнинчен ытлашши
ан илĕр». 14 Салтаксем те унран ыйтнă: «Пирĕн тата
мĕн тумалла?» Иоанн хуравланă: «Кўрентерсе,
суйса айăпласа никам укçине те ан хапсăнăр,
хăвăра мĕн чухлĕ шалу панипе çырлахăр».
15 Кĕтсе тăракан çынсем пурте хăйсен ăшĕнче
Иоанн пирки: «Ку Турă Суйласа илни мар-ши?» –
тесе шухăшланă чухне 16 Иоанн пурне те çапла
каланă: «Эпĕ сире шывпа тĕне кĕртетĕп. Анчах та
манран Хăватли килет, эпĕ Унăн пушмакне хывма
та тивĕçлĕ мар. Вăл сире Святой Сывлăшпа тата
вутпа тĕне кĕртĕ. 17 Кĕреçи те Унăн Хăйĕн аллинчех.
Вăл йĕтемĕнчи туллине сăвăрса тасатĕ те ăна
Хăйĕн кĕлетне пухса хурĕ, арпи-улăмне вара сўнми
вутра çунтарса ярĕ».
18 Çакнашкал тата ытти сăмахсемпе Иоанн халăха
Ырă Хыпар нумай вĕрентнĕ. 19 Вăл Ирод пуçлăха
хăй пиччĕшĕн арăмне, Иродиадăна, качча
илнĕшĕн тата ытти усал ĕçсемшĕн хытă питленĕ.
20 Ирод вара усал ĕçĕсем çумне тата тепĕр усал ĕç
хушнă: Иоана тĕрмене хуптарнă.

*Иисуса шыва кĕртни*

(Мф. 3:13-17; Мк. 1:9-11)

21 Пĕтĕм халăх шыва кĕнĕ чух, Иисус шыва кĕрсе
тухса кĕлтунă вăхăтра, тўпе уçăлса кайнă та, 22 Ун
çине Святой Сывлăш кăвакарчăн кĕлетки пек
курăнса аннă. Вара тўперен сасă илтĕннĕ: «Эсĕ –
Манăн савнă Ывăлăм, Манăн ырă кăмăлăм Санра!»

*Иисус Христосăн йăх тымарĕ*

(Мф. 1:1-17)

23 Хăйĕн ĕçне пуçланă чух Иисус пĕр вăтăр
çулсенче пулнă. Çынсем шухăшланă тăрăх, Вăл
Иосиф ывăлĕ, Илия мăнукĕ пулнă. Унăн ытти мăн
аслашшĕсем: 24 Матфат, Левий, Мелхий, Ианнай,
Иосиф, 25 Маттафий, Амос, Наум, Еслим, Наггей,
26 Мааф, Маттафий, Семеий, Иосиф, Иуда,
27 Иоаннан, Рисай, Зоровавель, Салафииль, Нирий,
28 Мелхий, Аддий, Косам, Елмодам, Ир, 29 Иосий,
Елиезер, Иорим, Матфат, Левий, 30 Симеон, Иуда,
Иосиф, Ионан, Елиаким, 31 Мелеай, Маинан,
Маттафай, Нафан, Давид, 32 Иессей, Овид, Вооз,
Салмон, Наассон, 33 Аминадав, Арам, Есром, Фарес,
Иуда, 34 Иаков, Исаак, Авраам, Фарра, Нахор,
35 Серух, Рагав, Фалек, Евер, Сала, 36 Каинан,
Арфаксад, Сим, Ной, Ламех, 37 Мафусал, Енох,
Иаред, Малелеил, Каинан, 38 Енос, Сиф, Адам.
Адама вара Турă пултарнă.

*Иисуса шуйттан илĕртсе тĕрĕслени*

(Мф. 4:1-11; Мк. 1:12-13)

4 Святой Сывлăшпа хăватланнă Иисуса Иордан
хĕрринчен тавăрăнсан Сывлăш пуш хире ертсе
кайнă. 2 Унта Ăна шуйттан хĕрĕх кун илĕртсе
тĕрĕсленĕ. Çав кунсенче Иисус нимĕн те çимен,
юлашкинчен Унăн çиесси килнĕ. 3 Шуйттан Ăна
каланă: «Эсĕ Турă Ывăлĕ пулсан çак чула çăкăр
пулма хуш». 4 «Çырнинче çапла каланă, – тавăрнă
ăна Иисус, – çын çăкăрпа кăна пурăнмасть, Туррăн
кашни сăмахĕпех пурăнать». 5 Вара шуйттан Ăна
çўллĕ ту çине илсе кайнă та пĕр самантрах тĕнчери
мĕн пур патшалăха кăтартнă. 6 Унтан вăл çапла
каланă: «Çак мĕн пур патшалăхсемпе пуç пулмалли
хама панă ирĕке, вĕсен чап-илемне Сана парăп,
мĕншĕн тесен эпĕ ăна кама парас тетĕп, çавна
паратăп. 7 Çапла вара, мана ўксе пуççапсан,
пĕтĕмпех Санăн пулĕ». 8 «Кай Ман патăмран,
шуйттан, – тенĕ Иисус. – Çырнинче çапла каланă:
„Хуçа Турруна кăна пуççап, пĕр Уншăн анчах ĕçлесе
тăр“». 9 Вара шуйттан Ăна Иерусалима илсе кайнă
та Турă Çурчĕ тăррине тăратса каланă: «Эсĕ Турă
Ывăлĕ пулсан çакăнтан аялалла сик. 10 Çырнинче
каланă вĕт: „Турă Хăйĕн ангелĕсене Сана упрама
хушĕ, 11 урупа чултан такăнасран вĕсем Сана алă
çинче çĕклесе çўрĕç“». 12 Иисус шуйттана хирĕç
çапла каланă: «„Хăвăн Хуçа Турруна илĕртсе ан
тĕрĕсле“, – тенĕ Çырнинче». 13 Урăх нимпе те
илĕртме çук пирки майлă вăхăт çитиччен шуйттан
Ун патĕнчен кайнă.

*Иисус Галилейăра вĕрентме пуçлани*

(Мф. 4:12-17; Мк. 1:14-15)

14 Иисус вара Сывлăшпа хăватланса Галилейăна
тавăрăннă. Ун çинчен пĕтĕм таврана хыпар
сарăлнă. 15 Вăл унти синагогăсенче вĕрентнĕ, пурте
Ăна мухтаса калаçнă.

*Иисуса Назаретра йышăнманни*

(Мф. 13:53-58; Мк. 6:1-6)

16 Пĕррехинче Иисус Хăй ўснĕ хулана, Назарета,
пынă. Шăмат кун Вăл яланхи пекех синагогăна кĕнĕ
те Çырнине вулама хатĕрленсе тăнă. 17 Ăна Исаия
пророк кĕнекине панă. Вăл кĕнекене уçнă та çак
вырăна тупса вулама пуçланă: 18 «Хуçа Туррăн
Сывлăшĕ Ман çинче, Вăл Мана суйласа илсе
чухăнсене Ырă Хыпар вĕрентме ячĕ. Вăл Мана
хуйхăпа касăлнă чĕреллисене лăплантарма ячĕ.
Тыткăнрисене ирĕке кăларасса, суккăррисене
куракан тăвасса, пусмăртисене хăтарасса, 19 Туррăн
ырăлăх кăтартас вăхăчĕ çитессе пĕлтерме ячĕ».
20 Иисус вара кĕнекине хупса унта ĕçлекен çынна
панă та, Хăй ларнă. Синагогăри çынсем пурте Ун
çине куç илмесĕр пăхнă. 21 Унтан Вăл вĕсене çапла
каланă: «Çырнинчи эсир илтнĕ çак сăмахсем паян
пурнăçланчĕç ĕнтĕ».

[22] Вара вӗсем пурте Иисус каланипе килӗшнӗ,
Унӑн ҫӑварӗнчен тухакан ырӑлӑх сӑмахӗсенчен
тӗлӗннӗ. «Иосиф ывӑлӗ мар-и вара Ку?» – тесе
калаҫнӑ вӗсем. [23] Иисус вӗсене каланӑ: «Паллах,
эсир, ваттисем каларӑшле: „Тухтӑр, Хӑвна Ху сыват!“
– тесе калама пултаратӑр Мана. Капернаумра Эсӗ
мӗн тунине илтрӗмӗр эпир. Кунта та, Ху ӳснӗ
хулара, ҫавна туса кӑтарт тесе каласшӑн ӗнтӗ эсир».
[24] «Чӑн калатӑп сире, – тенӗ унтан, – хӑйӗн тӑван
ҫӗр-шывӗнче пӗр пророка та хапӑл туса
йышӑнмаҫҫӗ. [25] Тата ҫакна калас килет: Илия
пурӑннӑ вӑхӑтра виҫӗ ҫул та ултӑ уйӑх пӗртте ҫумӑр
ҫуман. Вара ҫав ҫӗр-шывра питӗ йывӑр выҫлӑх
пуҫланнӑ. Ун чухне Израильте тӑлӑх арӑмсем
нумай пулнӑ, [26] ҫапах Илия пророка Сидонри
Сарепта хулинчи пӗр тӑлӑх арӑм патне янисӗр
пуҫне пӗрин патне те яман. [27] Елисей пророк
вӑхӑтӗнче те Израиль ҫӗрӗнче юхан-суранлӑ
ҫынсем нумай пулнӑ, анчах Сири ҫынни Неемансӑр
пуҫне вӗсенчен пӗри те тасалман».

[28] Ҫавна илтсен синагогӑрисем пурте питӗ хытӑ
ҫилленсе кайнӑ. [29] Вӗсем сиксе тӑнӑ та Иисуса
хуларан хӑваласа кӑларнӑ. Вара Ӑна хӑйсен хули
вырнаҫнӑ ту ҫине илсе хӑпартса аялалла тӗртсе
ярасшӑн пулнӑ. [30] Анчах та Иисус вӗсен
хушшинченех утса тухса кайнӑ.

*Иисус Христос Капернаумра кӑтартнӑ хӑватсем*
(Мк. 1:21-28)

[31] Кайран Иисус Галилейӑри Капернаум хулине
пынӑ. Вара шӑмат кунсенче халӑха вӗрентнӗ.
[32] Ҫынсем Унӑн вӗрентӗвӗнчен тӗлӗнмеллипех
тӗлӗннӗ, мӗншӗн тесен Унӑн сӑмахӗнче Турӑ
хӑвачӗ пулнӑ. [33] Синагогӑра усал ернӗ ҫын пулнӑ.
Вӑл хыттӑн кӑшкӑрса каланӑ: [34] «Эй, Назарет
Иисусӗ! Санӑн пирӗнпе мӗн ӗҫ пур ара? Эсӗ пире
пӗтерме килнӗ. Эсӗ камне эпӗ пӗлетӗп: Эсӗ –
Туррӑн Святойӗ!» [35] Иисус ӑна чарса ҫапла каланӑ:
«Чарӑн! Тух ун ӑшӗнчен!» Вара усал сывлӑш ҫав
ҫынна синагога варринчех урайне ӳкернӗ те
нимӗнле сиен тумасӑрах ун ӑшӗнчен тухнӑ.
[36] Ҫавна куракансем пурте хӑраса-тӗлӗнсе кайса
пӗр-пӗринчен ыйтнӑ: «Ку мӗне пӗлтерет-ши? Вӑл
Хӑй ирӗкӗпе тата вӑй-хӑвачӗпе усал сывлӑшсене
хушать те, лешсем тухаҫҫӗ».

[37] Ҫавӑн хыҫҫӑн пӗтӗм таврана Иисус ҫинчен
хыпар сарӑлнӑ.

[38] Синагогӑран тухсан Вӑл Симон килне пынӑ.
Симонӑн хунямӑшӗ сив чирпе питӗ йывӑр выртнӑ.
Ҫавӑн чухне Иисусран ӑна пулӑшма ыйтнӑ. [39] Иисус
ун патне пырса сив чире чарнӑ, вара унӑн чирӗ
иртсе кайнӑ. Хӗрарӑм ҫавӑнтах тӑнӑ та вӗсене
хӑналама пуҫланӑ. [40] Чир-чӗрлӗ ҫын пуррисем
пурте хӗвел аннӑ чухне вӗсене Иисус патне ҫавӑтса
пынӑ. Вӑл, кашнин ҫинех Хӑйӗн аллине хурса,
чирлисене сыватнӑ. [41] Усал сывлӑшсем те нумай
ҫын ӑшӗнчен: «Эсӗ – Христос, Турӑ Ывӑлӗ!» – тесе
кӑшкӑрса тухнӑ. Иисус вӗсене Хӑй Христос пулнине
пӗлни ҫинчен калама чарнӑ.

*Иисус Галилейӑра вӗрентни*
(Мк. 1:35-39)

[42] Ирхине Иисус унтан тухса ҫын ҫук вырӑна
кайнӑ. Ҫынсем Ӑна шыранӑ, тупсан, Ӑна хистесех
хӑйсемпе хӑварасшӑн пулнӑ. [43] Анчах та Иисус
вӗсене каланӑ: «Манӑн ытти хуласенче те Турӑ
Патшалӑхӗ ҫинчен Ырӑ Хыпар пӗлтерсе ҫӳремелле,
Мана ҫавӑншӑн янӑ». [44] Вӑл вара Галилейӑри
синагогӑсенче ӳкӗтлесе вӗрентнӗ.

*Иисусӑн малтанхи вӗренекенӗсем*
(Мф. 4:18-22; Мк. 1:16-20)

5 Пӗррехинче Иисус Геннисарет кӳлли хӗрринче
чарӑнса тӑнӑ. Турӑ сӑмахне итлесшӗн Ун патне
халӑх кӗпӗрленсе пухӑннӑ. [2] Вӑл кӳлӗ хӗрринче икӗ
кимӗ ларнине курнӑ. Пулӑҫӑсем кимӗ ҫинчен тухса
сӗреке-тетелӗсене ҫуса тӑнӑ. [3] Иисус, Симон кимми
ҫине ларсан, ӑна ҫыран хӗрринчен кӑшт шаларах
ишсе кайма хушнӑ. Унтан Хӑй кимӗ ҫинчен халӑха
вӗрентме пуҫланӑ. [4] Вӗрентсе пӗтерсен Вӑл Симона
ҫапла каланӑ: «Тарӑнрах ҫӗре ишсе кӗр те пулӑ
тытма сӗреке-тетелӳсене пӑрах». [5] Симон Ӑна хирӗҫ
каланӑ: «Вӗрентекен! Эпир ҫӗрӗпех тертленсе
ӗҫлерӗмӗр, ҫапах пӗр пулӑ та тытаймарӑмӑр. Эсӗ
хушатӑн пулсан, сӗреке-тетелсене пӑрахам эппин».
[6] Ҫапла тусан вара питӗ нумай пулӑ кӗнӗ, вӗсен
сӗреке-тетелӗсем те ҫурӑлма пуҫланӑ. [7] Вӗсем вара
тепӗр кимӗ ҫинчи юлташӗсене паллӑ кӑтартса
хӑйсене пулӑшма чӗннӗ. Лешсем ишсе пырсан икӗ
кимӗ туллиех пулӑ тултарнӑ, ҫавӑнпа вӗсен
киммисем путма пуҫланӑ. [8] Петр текен Симон ҫавна
курсан Иисус ури умне ӳксе: «Эй, Хуҫамӑр! Манпа,
ҫылӑхлӑ ҫынпа, пӗрле ан пулсам, кайсам», – тенӗ.

[9] Хӑйсем тытнӑ пулӑ нумай пулнӑран Симон та,
унпа пӗрле пулнисем те хӑраса-тӗлӗнсе кайнӑ.
[10] Зеведей ывӑлӗсем те, Симонӑн юлташӗсем
Иаковпа Иоанн, хӑраса ӳкнӗ. Иисус вара Симона
каланӑ: «Ан хӑра, паянтан эсӗ этем чунӗсене
тытакан пулӑн». [11] Унтан вӗсем икӗ киммине те
ҫыран хӗррине туртса кӑларнӑ та, пӗтӗмпех
пӑрахса хӑварса, Иисус хыҫҫӑн кайнӑ.

*Юхан-суранлӑ ҫынна сыватни*
(Мф. 8:1-4; Мк. 1:40-45)

[12] Иисус пӗр хулара юхан-суранланса кайнӑ ҫынна
тӗл пулнӑ. Иисуса курсан вӑл ӳксе пуҫҫапнӑ та Ӑна
йӑлӑннӑ: «Хуҫамӑр! Сыватас тесессӗн, Эсӗ мана
сыватма пултаратӑнах». [13] Иисус аллине тӑсса ӑна
сӗртӗннӗ те: «Чиртен тасатас тетӗп, сывал», – тенӗ.
Ҫавӑнтах ун ҫинчи юхан-суран пӗтнӗ. [14] «Асту, кун
ҫинчен никама та ан кала, – тенӗ ӑна Иисус. – Кайса
хӑвна священника кӑтарт та ху тасалнӑшӑн,
Моисей саккунӗ хушнӑ пек, Турра парне кӳр. Ҫакӑ
ху сывалнине пӗлтерни пулать те ӗнтӗ».

[15] Апла пулин те Иисус ҫинчен ытларах та ытларах
ырӑ ят сарӑлнӑ. Вӑл вӗрентнине итлеме те, чир-
чӗртен сывалма та Ун патне темӗн чухлӗ халӑх
ҫӳренӗ. [16] Анчах та Иисус час-часах ҫын ҫук вырӑна
кайса кӗлтунӑ.

*Паралич çапнă çынна сыватни*
(Мф. 9:1-8; Мк. 2:1-12)
17 Пĕррехинче Иисус халăха вĕрентнĕ.
Галилейăпа Иудея çĕрĕнчи пур ял-хуларан тата
Иерусалимран пынă фарисейсемпе саккун
вĕрентӳçисем те унта ларнă. Чирлисем сывалнипе
Хуçа Турă вăй-хăвачĕ палăрнă. 18 Çавăнта пĕрисем
паралич çапнă çынна выртнă вырăнĕпех çĕклесе
пынă та пӳрте йăтса кĕрсе ăна Иисус умне
хурасшăн тăрмашнă. 19 Анчах халăх йышлă
пулнăран шала кĕме май тупайман. Вара вĕсем
çурт тăррине хăпарнă та ăна пĕр тĕлтен сӳтсе
паралич çапнă çынна выртнă вырăнĕпех
пухăннисен варрине, Иисус умнех, антарнă.
20 Вĕсен ĕненĕвне курсан Иисус çав çынна: «Санăн
çылăхусем каçарăнчĕç», – тенĕ. 21 Фарисейсемпе
саккун вĕрентӳçисем пĕр-пĕрин хушшинче çапла
шухăшласа калаçнă: «Вăл Турра хурлать! Камах
вара Вăл? Турăсăр пуçне çылăх каçарма кам
пултарĕ?» 22 Иисус вĕсен шухăшĕсене пĕлсе çапла
тавăрса каланă: «Эсир мĕншĕн ун пек шухăшлатăр?
23 Мĕн калама çăмăлрах: „Сан çылăхусем
каçарăнчĕç“ теме-и е: „Тăр та утса çӳре“ теме?
24 Анчах та Этем Ывăлĕн çĕр çинче çылăх каçарма
та ирĕк пуррине сирĕн пĕлмелле». Çавна кăтартса
парас тесе Вăл паралич çапнă çынна каланă: «Сана
калатăп: тăр та вырăнна илсе киле кай». 25 Лешĕ
вара çав самантрах вĕсен куçĕ умĕнчех тăнă та
вырăнне илсе, Турра мухтаса, килне кайнă. 26 Унта
тăракансем пурте шалтах тĕлĕнсе кайнă, хăраса
ӳкнипе вара Турра мухтама пуçланă. «Паян эпир
тĕлĕнмелле ĕç-пуç куртăмăр», – тенĕ вĕсем.

*Иисус Левие чĕнни*
(Мф. 9:9-13; Мк. 2:13-17)
27 Çавăн хыççăн, унтан кайсан, Иисус налук
пухмалли çуртра ларакан Левий ятлă çынна курнă.
«Ман хыçран пыракан пул», – тенĕ ăна Иисус.
28 Лешĕ тăнă та, пĕтĕмпех хăварса, Иисус хыççăн
кайнă. 29 Унтан вăл Иисуса хăналама хăйĕн килĕнче
пысăк ĕçкĕ-çикĕ тунă. Хăнасем хушшинче налук
пухакансем те, ытти çынсем те нумаййăн пулнă.
30 Фарисейсемпе саккун вĕрентӳçисем Иисусăн
вĕренекенĕсене ӳпкелешсе каланă: «Мĕншĕн эсир
налук пухакансемпе тата çылăхлă çынсемпе пĕрле
ĕçсе çиетĕр?» 31 Çавна илтсен Иисус вĕсене хирĕç
çапла каланă: «Тухтăр сыввисене мар, чирлисене
кирлĕ. 32 Эпĕ тӳрĕ пурăнакансене мар, çылăхлисене
ӳкĕнме чĕнмешкĕн килнĕ».

*Типĕ тытасси çинчен ыйтни*
(Мф. 9:14-17; Мк. 2:18-22)
33 Вара вĕсем Иисусран ыйтнă: «Иоанн
вĕренекенĕсем те, фарисейсен вĕренекенĕсем те
тăтăшах типĕ тытаççĕ, кĕлтăваççĕ, Сан
вĕренекенӳсем мĕншĕн ĕçсе çиеççĕ?» 34 Иисус
вĕсене çапла каланă: «Эсир туй ачисене кĕрӳ каччă
хăйсемпе пĕрле чухне типĕ тыттарайăр-и? 35 Акă
кĕрӳ каччăна вĕсенчен туртса илес кунсем çитĕç,
çав кунсенче вара вĕсем типĕ тытĕç».
36 Унтан Вăл тепĕр ытарлăх каласа панă: «Никам
та çĕнĕ тумтиртен чĕрсе илсе кивĕ тумтир çине
саплăк лартмасть. Апла тусан вăл çĕнĕ тумтирне те
пăсать, çĕнĕ саплăкĕ те кивви çумĕнче килĕшмест.
37 Тин тунă хĕрлĕ эрехе те кивĕ сăран хутаçа никам
та тултармасть. Апла тусан çĕнĕ эрех кивĕ хутаçа
çурса ярĕ те, хăй те юхса тухĕ, хутаçĕ те сая кайĕ.
38 Тин тунă хĕрлĕ эрехе çĕнĕ сăран хутаçа
тултармалла, вара вĕсем иккĕшĕ те упранса юлĕç.
39 Пулса çитнĕ хĕрлĕ эрех ĕçнĕ хыççăнах никам та
тин тунă хĕрлĕ эрех ĕçесшĕн пулмĕ, мĕншĕн тесен
вăл: „Кивви лайăхрах!“ – тейĕ».

*Иисус – шăмат кун хуçи те*
(Мф. 12:1-8; Мк. 2:23-28)
6 Пĕррехинче, пасхăн иккĕмĕш кунĕ хыççăнхи
малтанхи шăмат кун, Иисусăн тырă пуссипе
иртсе пымалла пулнă. Унăн вĕренекенĕсем пучах
тата-тата илсе, ывăç тупанĕ çинче сăтăрса çиме
пуçланă. 2 Хăш-пĕр фарисейсем вĕсенчен: «Эсир
мĕншĕн шăмат кун тума юраманнине тăватăр?» –
тесе ыйтнă. 3 Иисус вĕсене çапла тавăрнă:
«Пĕррехинче, Давид тата унпа пĕрле пулнисем
выçăпа аптăрасан, вăл мĕн туни çинчен вуламан-
им эсир? 4 Епле вăл кĕлĕ çуртне кĕрсе Турра
халалланă çăкăрсене илсе хăй те çинĕ, пĕрле
пулнисене те панă. Вĕсене священниксемсĕр пуçне
никамăн та çиме юраман вĕт-ха». 5 Унтан вĕсене
çапла каланă: «Этем Ывăлĕ – шăмат кун хуçи те».

*Алли типнĕ çынна сыватни*
(Мф. 12:9-14; Мк. 3:1-6)
6 Иисуса тепĕр шăмат кун та синагогăна кĕрсе
вĕрентме тӳр килнĕ. Унта сылтăм алли типнĕ çын
пулнă. 7 Иисус шăмат кун сыватмĕ-и-ха тесе, Ăна
айăплама сăлтав шыраса, саккун вĕрентӳçисемпе
фарисейсем Ăна сăнаса тăнă. 8 Иисус вĕсен
шухăшĕсене пĕлнĕ, çавăнпа Вăл алли типнĕ çынна:
«Тăр та халăх умне тух», – тенĕ. Лешĕ тăнă та тухнă.
9 Унтан Иисус вĕсене каланă: «Эпĕ сирĕнтен ыйтам-
ха: шăмат кун мĕн тумалла? Ыррине-и е усаллине?
Чуна çăлмалла-и е пĕтермелле?» Пĕри те хирĕç
чĕнмен. 10 Вара Иисус вĕсене пурне те пăхса
çавăрăннă та çав çынна: «Аллуна тăс», – тенĕ. Лешĕ
тăснă та, унăн алли тӳрленсе тепри пекех пулса
тăнă. 11 Вĕсем вара урса çитнипе хăйсем хушшинче:
«Ку Иисуса мĕн тăвар-ши?» – тесе калаçнă.

*Вун икĕ апостола суйласа илни*
(Мф. 10:1-4; Мк. 3:13-19)
12 Çав кунсенче Иисус кĕлтума ту çине хăпарнă.
Унта Вăл çĕр каçипех Турра кĕлтунă. 13 Тул çутăлсан
Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене чĕнсе вĕсенчен вун
иккĕшне суйласа илнĕ, вĕсене апостол ятне панă.
Вĕсем çаксем: 14 Петр тесе Иисус ят панă Симон,
унăн шăллĕ Андрей, Иаков, Иоанн, Филипп,
Варфоломей, 15 Матфей, Фома, Алфей ывăлĕ Иаков,
Зилот текен Симон, 16 Иаков ывăлĕ Иуда тата Иуда
Искариот. Çакскер кайран сутăнчăк пулса тăнă.

*Иисус халăха сыватни тата вĕрентни*
(Мф. 4:23-25)
17 Иисус апостолсемпе пĕрле ту çинчен ансан
тӳрем çĕрте чарăнса тăнă. Унта вара Унăн чылай
вĕренекенĕсем тата пĕтĕм Иудейăран,
Иерусалимран, тинĕс хĕрринчи Тирпа Сидон
таврашĕнчен нумай халăх пуçтарăннă. 18 Вĕсем
пурте Иисус вĕрентнине итлеме тата чирĕсенчен
сывалма пынă. Усал сывлăш ернипе аптăракан
çынсем те пырса тăнă. Иисус вĕсене сыватнă.
19 Пĕтĕм халăх Ăна сĕртĕнесшĕн пулнă, мĕншĕн
тесен Унран тухакан хăват пурне те сыватнă.

*Телей çинчен, хуйхă çинчен*
(Мф. 5:1-12)
20 Хăйĕн вĕренекенĕсем çине пăхса Иисус çапла
калама пуçланă: «Чун-чĕм кĕлмĕçисем телейлĕ,
сире Турă Патшалăхĕ пулĕ. 21 Халĕ выçăхса
пурăнакансем телейлĕ, эсир тăранăр. Халĕ
йĕрекенсем телейлĕ, эсир савăнса хĕпĕртĕр. 22 Этем
Ывăлĕ пирки сире çынсем курайми пулсан,
сирĕнпе хутшăнми пулсан, хурласан, сирĕн ятăртан
та усал сăмах туса хурсан, эсир телейлĕ пулăр.
23 Вĕсен мăн аслашшĕсем те пророксене çаплах
хĕсĕрленĕ. Çав кун савăнăр та хĕпĕртĕр, мĕншĕн
тесен тӳпери сăвапăр пысăк пулĕ.
24 Пуянсем, сире вара хуйхă пулĕ, эсир савăнăçăра
илтĕр ĕнтĕ. 25 Халĕ мăнтăрпа иртĕхекенсем, сире
хуйхă пулĕ, эсир выçăпа аптăрăр. Халĕ кулакансем,
сире хуйхă пулĕ, эсир хурланса макăрăр. 26 Сирĕн
çинчен пурте мухтаса калаçсан, сире хуйхă пулĕ,
вĕсен мăн аслашшĕсем те суя пророксене çаплах
мухтанă».

*Хăвăрăн тăшманăрсене юратăр*
(Мф. 5:38-48; 7:12)
27 «Анчах та сире, сăмахăма итлекенсене, калатăп:
хăвăрăн тăшманăрсене юратăр, хăвăра курайман
çынсене ырă тăвăр. 28 Хăвăра ылханакансене ырă
сунăр, кӳрентерекен çынсемшĕн кĕлтăвăр. 29 Хăвна
пĕр енчен çупса яракана тепĕр енне çавăрса пар.
Санран çиелти тумтире туртса илекене кĕпӳне
илме те ан чар. 30 Пур ыйтакана та пар. Хăвăнне
илнĕ çынран каялла ан шыра. 31 Çынсене хăвăрпа
мĕнле пултарас килет, вĕсемпе те çавнашкалах
пулăр. 32 Хăвăра юратакансене кăна саватăр пулсан,
сире уншăн мĕн мухтамалли пур? Çылăхлисем те
хăйсене юратакан çынсене саваççĕ. 33 Хăвăршăн
ырă ĕç тăвакансене кăна ырă тăватăр пулсан, сире
уншăн мĕн мухтамалли пур? Çылăхлă çынсем те
çаплах тăваççĕ. 34 Тавăрса паракан, шанчăклă
çынна çеç кивçен паратăр пулсан, сире уншăн мĕн
мухтамалли пур? Çылăхлисем те, каялла илессе
шанса, çылăхлă çынсене кивçен параççĕ. 35 Эсир
вара хăвăрăн тăшманăрсене юратăр, вĕсене ырă
тăвăр. Тавăрса парасса шанмасăрах кивçен парăр.
Вара сире пысăк сăвап пулĕ, эсир Çӳлти Туррăн
ачисем пулăр, мĕншĕн тесен Вăл пархатарсăр
çынсемшĕн те, усаллисемшĕн те ырă. 36 Çапла вара,
сирĕн Аçăр епле ырă кăмăллă, эсир те çавăн пек
ырă кăмăллă пулăр».

*Ыттисене ан айăплăр*
(Мф. 7:1-5)
37 «Ан айăплăр, вара хăвăра та айăпламĕç. Çынна
сивлесе ан калаçăр, вара хăвăра та сивлемĕç.
Каçарăр, вара хăвăра та каçарĕç. 38 Парăр, вара
хăвăра та парĕç: тулли виçепе виççе, силлесе, пусса,
тӳпеми тултарсах чĕрçи çине хурĕç. Мĕнле виçепе
виçетĕр, хăвăра та çав виçепех виççе парĕç».
39 Тата Иисус вĕсене çапла ытарлăх каласа панă:
«Суккăра суккăр çавăтса çӳреме пултарать-и? Апла
вĕсем иккĕшĕ те шăтăка кĕрсе ӳкмĕç-и?
40 Вĕренекен хăйĕн вĕрентекенĕнчен аслă
пулмасть. Çапах та пĕлĕвне ӳстерсен кирек кам та
хăйĕн вĕрентекенĕ пек пулма пултарать. 41 Мĕншĕн
эсĕ тăвану куçĕнчи çӳппе куратăн, хăвăн куçунти
пĕренене асăрхамастăн? 42 Хăвăн куçунти пĕренене
асăрхамастăн пулсан епле-ха эсĕ: „Тăванăм, куçна
кĕнĕ çӳппе кăларса ярам-ха“, – тесе калама
пултаратăн? Икĕ питлĕскер! Малтан хăвăн куçунти
пĕренене кăлар, вара тин тăвану куçĕнчи çӳппе
мĕнле кăлармаллине уçăмлăн курăн».

*Йывăçпа çимĕçĕ çинчен*
(Мф. 7:17-20; 12:34-35)
43 «Ырă йывăç начар çимĕç тумасть. Начар йывăç
та ырă çимĕç тумасть. 44 Кашни йывăçа çимĕçĕнчен
пĕлеççĕ. Смоква çимĕçне кӳкен тĕмми çинчен
татмаççĕ, иçĕм çырлине те шăлан тĕмми çинчен
пуçтармаççĕ. 45 Ырă çыннăн ырă кăмăлĕнчен ырри
тухать, усал çыннăн усал кăмăлĕнчен усалли
тухать. Этемĕн кăмăлĕ мĕнпе тулнă, чĕлхи-çăварĕ
те çавнах калать».

*Çурт лартакан икĕ çын çинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 7:24-27)
46 «Мĕншĕн эсир Мана: „Эй, Хуçамăр! Хуçамăр!“ –
тесе чĕнетĕр, хăвăр вара Эпĕ вĕрентнĕ пек
тумастăр? 47 Ман пата килекен, Ман сăмахсене
итлекен, вĕсене пурнăçлакан кашни çын кам
евĕрлине каласа парам-ха сире. 48 Вăл, тарăн алтса,
çуртне чул никĕс çине лартнă çын евĕрлĕ. Вăйлă
шыв тулса çитсен çав çурт патне пырса капланнă,
çапах ăна хускатайман, мĕншĕн тесен çуртне чул
çине лартнă. 49 Ман сăмахсене итлесе вĕсене
пурнăçламан çын çуртне çĕр çине никĕссĕрех
лартнă çын евĕрлĕ. Вăйлă шыв капланса пырсан
çав çурт самантрах йăтăнса анать, вара ишĕлчĕк
çеç тăрса юлать».

*Çĕрпӳ тарçине сыватни*
(Мф. 8:5-13; Ин. 4:43-54)
7 Итлесе тăракан халăха Хăйĕн сăмахне каласа
пĕтерсен Иисус Капернаума кайнă. 2 Унта Рим
çĕрпĕвĕн пĕр тарçи вилес пекех чирлĕ выртнă
пулнă. Çĕрпӳ çав тарçа питĕ хакланă. 3 Иисус
çинчен илтсен вăл тарçине сыватма килтĕр тесе
йăлăнма Ун патне иудейсен ятлă-сумлă çыннисене
янă. 4 Лешсем Иисус патне пырсан Унран йăлăнса
ыйтнă: «Çав çĕрпӳ Санран пулăшу илме тивĕçлĕ
çын. 5 Вăл пирĕн халăха юратать, пире синагога та
лартса пачĕ». 6 Вара Иисус вĕсемпе пĕрле кайнă.
Вăл çĕрпӳ çурчĕ патне çитеспе лешĕ Ăна хирĕç

çапла калама тусĕсене янă: «Эй, Хуçамăр, ан
чăрман! Сана хамăн кил-çуртăма чĕнсе кĕртме эпĕ
тивĕçлĕ мар. 7 Сан патна пыма та хама тивĕççĕр
тесе шутларăм. Эсĕ хуш кăна, вара тарçăм сывалĕ.
8 Эпĕ аслисене пăхăнса тăратăп пулин те, манăн
хама пăхăнса тăракан салтаксем те пур. Эпĕ
вĕсенчен пĕрне: „Кай!“ – тесен, вăл каять. Тепĕрне:
„Кил!“ – тесен, вăл пырать. Тарçăма та: „Çавна ту!“ –
тесе хушсан, вăл тăвать».
9 Çак сăмахсене илтсен Иисус унран тĕлĕннĕ.
Унтан Хăй хыçĕнчен пыракан халăх еннелле
çаврăнса: «Калатăп сире, кунашкал çирĕп ĕненӳ
Эпĕ Израильте те курманччĕ», – тенĕ.
10 Иисус патне янисем каялла таврăнсан чирлĕ
выртакан тарçă сывалнине курнă.

### Тăлăх арăмăн ывăлне вилĕмрен чĕртни

11 Нумаях та вăхăт иртмен, Иисус Наин хулине
кайнă. Унпа пĕрле вĕренекенĕсенчен чылайăшĕ
тата темĕн чухлĕ халăх пынă. 12 Хула хапхи патне
çитеспе Вăл хуларан вилнĕ çынна çĕклесе
тухакансене тĕл пулнă. Вилни тăлăх арăмăн
пĕртен-пĕр ывăлĕ пулнă, халăх унта нумай
пуçтараннă. 13 Иисус çав тăлăх арăма курсан, ăна
хĕрхенсе: «Ан йĕр», – тенĕ. 14 Унтан Вăл пырса
вилене çĕклемеллине сĕртĕннĕ те, ăна çĕклесе
пыракансем чараннă. Иисус вара каланă: «Ачам,
сана тăма хушатăп!» 15 Вилнĕскер çаврăнтах тăрса
ларнă та калаçма пуçланă. Иисус ăна амăшне панă.
16 Çынсем пурте хăраса-тĕлĕнсе кайнă, вĕсем Турра
мухтаса каланă: «Пирĕн хушшăмăрта аслă пророк
тупăнчĕ! Турă Хăйĕн халăхне хăтарма килчĕ!»
17 Вара Ун çинчен çапла калаçни пĕтĕм Иудейăпа
ун таврашĕнчи çĕрсене сарăлнă.

*Иоанăн вĕренекенĕсем тата Иисус*
(Мф. 11:2-19)

18 Çавăн çинчен йăлтах Иоана хăйĕн
вĕренекенĕсем каласа кăтартнă. 19 Иоанн вара
вĕсенчен иккĕшне чĕнсе илнĕ те: «Килмелли Эсĕ-и
е пирĕн урăххине кĕтмелле?» – тесе ыйтма Иисус
патне янă. 20 Хайхисем Иисус патне пырсан каланă:
«Шыва кĕртекен Иоанн пире Сан патна çапла
ыйтма ячĕ: Килмелли Эсĕ-и е пирĕн урăххине
кĕтмелле?» 21 Çавăн чухне Иисус нумай çынна чир-
чĕртен сыватнă, усал сывлăшсене хăваласа
кăларнă, суккăр çынсенчен чылайăшне куракан
тунă. 22 Иоанн вĕренекенĕсене Иисус çапла каланă:
«Кайăр та хăвăр мĕн курни-илтнине Иоана каласа
парăр: суккăррисем куракан пулаççĕ, уксаххисем
çӳрекен пулаççĕ, юхан-суранлисем тасалаççĕ,
хăлхасăррисем илтекен пулаççĕ, вилнисем
чĕрĕлеççĕ, чухăннисем Ырă Хыпар итлеççĕ. 23 Ман
пирки иккĕленмен çын телейлĕ». 24 Иоанн янă
çынсем Хăйĕн патĕнчен кайсан Иисус халăха
Иоанн çинчен çапла калама пуçланă: «Эсир пуш
хире мĕн курма кайрăр? Çилпе хумханса ларакан
хăмăша-и? 25 Мĕн курма кайрăр вара эсир? Капăр
тумтир тăхăннă çынна-и? Чаплă тумланакансем,
пуян пурăнакансем патша çуртĕнче пурăнаççĕ.
26 Мĕн курма кайрăр-ха эппин? Пророка курма-и?
Çапла, калатăп сире: вăл пророкран та аслă. 27 „Акă
Эпĕ Сан умăнтан Хамăн хыпарçăна яратăп, вăл Сан
валли çул хатĕрлесе хурĕ“, – тенĕ Çырнинче. Вăл
шăпах çавă. 28 Калатăп сире: этем йăхĕнче Шыва
кĕртекен Иоанран аслăрах пĕр пророк та çук, анчах
Турă Патшалăхĕнче чи кĕçĕнни те унран аслă».
29 Иоана итленĕ пĕтĕм халăх, çав шутрах налук
пухакансем те, унран шыва кĕрсе Турра мухтанă.
30 Фарисейсемпе саккун вĕрентӳçисем кăна Турă
ирĕкне хирĕçлесе шыва кĕмен.
31 Хуçамăр вара çапла каланă: «Çак ăру çыннисене
кампа танлаштарам-ши? Кам евĕрлĕ вĕсем?
32 Вĕсем урамра пĕр-пĕрне çапла кăшкăрса ларакан
ачасем евĕрлĕ: „Эпир сирĕншĕн шăхличĕ
каларăмăр – эсир ташламарăр. Эпир сирĕншĕн
хурлăхлă юрă юрларăмăр – эсир йĕмерĕр“. 33 Шыва
кĕртекен Иоанн килчĕ: çăкăр та çимест, хĕрлĕ эрех
те ĕçмест. „Усал ернĕ ăна“, – тетĕр эсир. 34 Этем
Ывăлĕ килчĕ: çиет те, ĕçет те. „Ку çын çиме те,
хĕрлĕ эрех ĕçме те юратать. Вăл налук
пухакансемпе тата çылăхлă çынсемпе туслă“, –
тетĕр эсир. 35 Анчах та Турă ăслăлăхне ачисем пурте
тӳрре кăларчĕç ĕнтĕ».

### Çылăхлă хĕрарăма каçарни

36 Пĕр фарисей Иисуса хăнана чĕннĕ. Иисус вара
ун килне кĕнĕ те çиме ларнă. 37 Çак хулара çылăхлă
хĕрарăм пурăннă. Вăл фарисей килĕнче Иисус апат
çинине пĕлнĕ те алебастр савăтпа ырă шăршăллă
çу, мирă, илсе пынă. 38 Хĕрарăм, хыçалтан пырса,
Иисус ури патĕнче йĕрсе тăнă. Унăн урисем çине
куççуль юхтарса хăйĕн çӳçĕпе шăла-шăла илнĕ. Вăл
Иисусăн урисене чуптăва-чуптăва мирăпа сĕрнĕ.
39 Çавна курсан Иисуса чĕнсе кĕртнĕ фарисей хăй
ăшĕнче шухăшланă: «Çак Çын чăнах та пророк
пулсан, Хăйне кам, мĕнле хĕрарăм сĕртĕннине
пĕлĕччĕ, мĕншĕн тесен ку çылăхлă хĕрарăм!»
40 Иисус ун енне çаврăнса: «Симон, Ман сана пĕр
сăмах каламали пур», – тенĕ. Симон вара:
«Вĕрентекен, кала», – тенĕ. 41 Иисус çапла каланă:
«Икĕ çын кивçен паракана парăмлă пулнă: пĕри
пилĕк çĕр динарий чухлĕ, тепри аллă динарий
чухлĕ. 42 Анчах вĕсен тӳлеме нимĕн те пулманран
кивçен pană çын вĕсене иккĕшне те каçарнă. Ĕнтĕ
кала-ха, çавсенчен хăшĕ ăна ытларах юратĕ?»
43 «Хăшне ытларах каçарнă, çавă тесе шутлатăп
эпĕ», – тенĕ Симон. «Эсĕ тĕрĕсех шухăшлатăн», –
тенĕ Иисус. 44 Унтан Вăл, хĕрарăм енне çаврăнса,
Симона каланă: «Çак хĕрарăма эсĕ куратăн-и? Эпĕ
санăн кил-çуртна кĕтĕм, çапах эсĕ ура çума Мана
шыв та памарăн. Ку хĕрарăм вара Ман урасене
куççулĕпе çуса, хăйĕн çӳçĕпе шăлса типĕтрĕ. 45 Эсĕ
Мана тăванла чуптумарăн, вăл вара Эпĕ
килнĕренпех Манăн урасене пĕр чарăнмасăр
чуптăвать. 46 Эсĕ Манăн пуçăма тип çу та сĕрмерĕн,
вăл вара Манăн урасене мирă сĕрчĕ. 47 Çавăнпа

калатăп сана: унăн, çылăха нумай кĕнĕскерĕн,
юратулăхĕ нумай пулнăран çылăхĕсем каçарăнаççĕ.
Камăн çылăхĕ сахал каçарăнать, çав сахал
юратать».
48 Вара Иисус хĕрарăма каланă: «Санăн çылăхусем
каçарăнчĕç». 49 Унта ларакансем хăйсен ăшĕнче:
«Ку кам-ши? Вăл çылăхсене каçарма та пултарать»,
– тенĕ. 50 Иисус вара çав хĕрарăма: «Ĕненĕвӳ сана
çăлчĕ, канăçлă каях ĕнтĕ», – тенĕ.

## Хĕрарăмсем Иисуспа пĕрле çӳрени

8 Иисус çавăн хыççăн хуласемпе ялсем тăрăх
Турă Патшалăхĕ çинчен Ырă Хыпар вĕрентсе
çӳренĕ. Унпа пĕрле Вун иккĕшĕ 2 тата усал
сывлăшран, чиртен сыватнă хăш-пĕр хĕрарăмсем
пынă. Вĕсем хушшинче ăшĕнчен çичĕ усал сывлăш
тухнă Магдалина текен Мария, 3 Ирод кил-çуртне
пăхса тăракан Хуза арăмĕ Иоанна, Сусанна тата
урăххисем те нумаййăн пулнă. Вĕсем Иисуса
хăйсен пурлăхĕпе пулăшса тăнă.

*Акаçă çинчен каланă ытарлăх*

(Мф. 13:1-9; Мк. 4:1-9)

4 Иисус патне тĕрлĕ хуласенчен питĕ нумай халăх
пуçтарăннă. Вăл вара ытарлăн калама пуçланă:
5 «Пĕр акаçă вăрлăх акма тухнă. Вăл акнă чух хăш
пĕрчисем çул хĕррине ӳкнĕ; вара вĕсене таптаса
пĕтернĕ, вĕçен кайăксем çисе янă. 6 Хăшĕ чуллă
çĕре ӳкнĕ. Нӳрĕк çителĕклĕ пулманран вăл шăтса
тухсанах типсе ларнă. 7 Хăшĕ пиçенлĕ вырăна ӳкнĕ,
пиçен çитĕнсе кайнă та калчана пусса лартнă.
8 Хăшĕ тата пулăхлă çĕр çине ӳкнĕ. Вăл шăтса тухнă
та пĕр пĕрчĕрен çĕр пĕрчĕ пултарнă». Çакна каласа
пĕтерсен Иисус хытă сасăпа: «Илтме хăлха пурри
илттĕр!» – тенĕ.

*Ытарлăн калани çинчен*

(Мф. 13:10-17; Мк. 4:10-12)

9 «Ку ытарлăх мĕне пĕлтерет?» – тесе ыйтнă Унран
вĕренекенĕсем. 10 Иисус вĕсене çапла каланă:
«Сире Турă Патшалăхĕн вăрттăнлăхĕсене пĕлме
панă. Ыттисене, пĕлме паманнисене, Эпĕ ытарлăн
калатăп, ĕнтĕ вĕсем пăхсан та курмаççĕ, илтсен те
ăнланмаççĕ».

*Акаçă çинчен каланă ытарлăха ăнлантарни*

(Мф. 13:18-23; Мк. 4:13-20)

11 «Çак ытарлăх акă мĕне пĕлтерет: вăрлăх вăл –
Турă сăмахĕ. 12 Çул хĕррине ӳкни – сăмаха илтекен
çынсене пĕлтерет, анчах, ĕненсе ан çăлăнччăр
тесе, вĕсем патне кайран шуйттан пырать те Турă
сăмахне вĕсен чĕринчен вăрласа каять. 13 Чуллă
çĕре ӳкни вара çакăн пеккисене пĕлтерет: вĕсем
Турă сăмахне илтсен хавасланса йышăнаççĕ, анчах
та хăйсем тымарсăр. Унашкаллисем пĕр вăхăт
ĕненсе пурăнаççĕ, анчах та тĕрĕслев вăхăтне
тӳсеймесĕр ĕненме пăрахаççĕ. 14 Пиçенлĕ вырăна
ӳкни те Турă сăмахне илтекен çынсене пĕлтерет,
анчах та пурăнан пурăнăçра вĕсене хĕвĕшӳ,
пуянлăх, çĕр çинчи киленĕç пусса лартать те, сăмах
вара тĕшĕсĕр пулать. 15 Пулăхлă çĕр çине ӳкни
çакăн пеккисене пĕлтерет: вĕсем илтнĕ сăмаха ырă
та таса чун-чĕрере упраççĕ, тӳсĕмлĕ пулса тулли
пучах кăлараççĕ».

*Çутаткăç çинчен каланă ытарлăх*

(Мк. 4:21-25)

16 Иисус татах каланă: «Çутаткăç çутсан никам та
ăна чӳлмекпе хупласа хумасть, кравать айне те
лартмасть. Пӳрте кĕрекенсем çутăра курччăр тесе
ăна çутаткăç лартмалли çине вырнаçтарать.
17 Вăрттăн туни курăнмасăр юлни çук, пытарса
хăварни те палăрманни, çиеле тухманни çук.
18 Çапла вара хăвăр епле итленине асăрхăр. Камăн
пур, ăна татах парĕç. Камăн çук, унăнне пур тесе
шутланине те туртса илĕç».

*Иисус Христос Амăшĕпе тăванĕсем*

(Мф. 12:46-50; Мк. 3:31-35)

19 Иисусăн Амăшĕпе тăванĕсем Ун патне пынă,
анчах çын нумай пулнăран вĕсем Ун çывăхне
пырайман. 20 «Сана курасшăн тулта Аннӳпе
тăванусем кĕтсе тăраççĕ», – тенĕ Иисуса. 21 «Манăн
аннем, Манăн тăванăмсем – Турă сăмахне
итлекенсем, ăна пăхăнса пурăнакансем», –
хуравланă вĕсене Иисус.

*Çил-тăвăла чарни*

(Мф. 8:23-27; Мк. 4:35-41)

22 Пĕррехинче Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсемпе
кимĕ çине кĕрсе ларнă та вĕсене çапла каланă:
«Кӳлĕ тепĕр енне каçар-ха». Унтан вĕсем ишме
пуçланă. 23 Ишсе пынă чух Иисус çывăрса кайнă.
Кӳлĕ çинче çил-тăвăл тухнă. Хум çапнипе кимме
шыв тула пуçланăран вĕсем хăрушă инкеке кĕрсе
ӳкнĕ. 24 Унтан вĕсем Иисус патне пынă та Ăна
вăратса: «Вĕрентӳçĕ! Вĕрентӳçĕ! Эпир пĕтетпĕр!» –
тенĕ. Иисус ыйхăран вăрансан çиле те, хумханакан
шыва та чарăнма хушнă. Вара пĕтĕмпех лăпланнă
та, çанталăк шăпах пулнă. 25 «Ĕçта сирĕн
ĕненĕвĕр?» – тенĕ вара вĕсене Иисус.
Вĕренекенĕсем хăраса-тĕлĕнсе пĕр-пĕринпе çапла
калаçнă: «Кам-ши Ку? Вăл çиле те, шыва та хушать
те – вĕсем Ăна пăхăнаççĕ».

*Усал ернĕ çынна сыватни*

(Мф. 8:28-34; Мк. 5:1-20)

26 Унтан вĕсем кӳллĕн тепĕр енче Галилейăна
хирĕç вырнаçнă Гадара çĕрне ишсе каçнă. 27 Иисус
çыран хĕррине тухсан Ăна хулари пĕр çын тĕл
пулнă; вăл тахçантанпах усал ернипе асапланнă.
Çавскер тумтирсĕрех çӳренĕ, пурăнасса та пӳрт-
çуртра мар, çĕр хăвăлĕнчи тупăклăхсенче пурăннă.
28 Иисуса курсан вăл кăшкăрса янă та Ун умне ӳксе
хытă сасăпа: «Эй, Çӳлти Турă Ывăлĕ, Иисус! Санăн
манпа мĕн ĕç пур? Тархасласа ыйтатăп, ан
асаплантар мана!» – тенĕ. 29 Мĕншĕн тесен Иисус
усал сывлăша çав çын ăшĕнчен тухма хушнă. Усал
сывлăш ăна нумай çул асаплантарнă пулнă. Çынсем
унăн алли-урине сăнчăрласа-тимĕрлесе сыхланă
пулин те, вăл сăнчăрĕсене тата-тата пăрахнă; вара
усал сывлăш ăна çын пурăнман вырăна хăваласа
кайнă. 30 Иисус унран: «Эсĕ мĕн ятлă?» – тесе ыйтнă.
«Пулккипех», – тенĕ лешĕ, мĕншĕн тесен ун ăшне

нумай-нумай усал кĕнĕ. 31 Усал сывлăшсем, хăйсене
тĕпсĕрлĕхе ан ятăр тесе, Иисуса йăлăнма пуçланă.
32 Çавăнтах, сăрт çинче, пĕр пысăк сысна кĕтĕвĕ
çӳренĕ. Усалсем Иисусран çав сыснасен ăшне кĕме
ирĕк памашкăн тархасласа ыйтнă. Иисус вĕсене
чарман. 33 Усал сывлăшсем çын ăшĕнчен тухнă та
сыснасем ăшне кĕнĕ. Вара сысна кĕтĕвĕ чăнкă
çырантан кӳлле сикнĕ те путса вилнĕ. 34 Сысна
пăхакансем мĕн пулса иртнине курсан хуланалла
чупнă, хăйсем мĕн курнине хулара та, таврари
ялсенче те кала-кала кăтартнă. 35 Çынсем мĕн
пулнине курма тухнă та Иисус патне пынă. Унпа
юнашарах усалсенчен тасалнă, тăхăнса тумланнă
çын чипер ăс-тăнпах ларнине курсан вĕсем хăраса
ӳкнĕ. 36 Куçăн куракансем вара вĕсене усал ернĕ
çын епле сывални çинчен каласа кăтартнă.
37 Гадара таврашĕнчи пĕтĕм халăх питĕ хăранипе
Иисуса хăйсем патĕнчен кайма тархасланă. Иисус
кимĕ çине ларса каялла тавăрăннă. 38 Усалсенчен
тасалнă çын хăйне пĕрле илме ыйтса Иисуса
йăлăннă, анчах Иисус ăна çапла каласа янă: 39 «Эсĕ
киле тавăрăн та Турă хăвăншăн мĕн тунине каласа
пар». Лешĕ кайнă та Иисус хăйшĕн мĕн тунине
хулипех каласа çӳренĕ.

*Иаир хĕрне чĕртни тата юн каякан хĕрарăма сыватни*

(Мф. 9:18-26; Мк. 5:21-43)

40 Иисус каялла тавăрăнсан, халăх Ăна хапăл туса
йышăннă, мĕншĕн тесен пурте Вăл килессе кĕтнĕ.
41 Çавăнта Иаир ятлă çын, унти синагога пуçлăхĕ,
Иисус патне пынă та, Ун ури умне ӳксех, хăйĕн
патне килне пыма тархасланă. 42 Унăн вун икĕ
çулхи пĕртен-пĕр хĕрĕ пулнă, вăл та пулин вилесле
чирлĕ выртнă.
Иисус пуçлăх килне кайнă чухне Ун тавра халăх
кĕпĕрленсе пынă. 43 Çавăнта вун икĕ çул юн
кайнипе асапланакан хĕрарăм пулнă. Вăл
тухтăрсем патне çӳресе пĕтĕм пурлăхне пĕтернĕ,
çапах ăна пĕри те сыватайман. 44 Çав хĕрарăм
хыçалтан пырса Иисусăн тумтир аркине сĕртĕннĕ
те, унăн çавăнтах юн кайма пăрахнă. 45 Иисус вара:
«Кам Мана сĕртĕнчĕ?» – тесе ыйтнă, анчах пурте
туннă. Петр та, Иисуспа пĕрле пулнисенчен
ыттисем те çапла каланă: «Вĕрентекен! Сан тавра
халăх кĕпĕрленсе пырать, хĕстерет. Эсĕ тата Мана
кам сĕртĕнчĕ тетĕн». 46 «Ман çумма пĕри сĕртĕнчĕ,
мĕншĕн тесен Эпĕ Хамран хăват тухнине сисрĕм», –
тенĕ Иисус. 47 Хĕрарăм хăй сĕртĕнни сисĕнмесĕр
юлманнине курсан Иисус патне чĕтресе пынă. Вара
Ун умне ӳксе мĕншĕн сĕртĕннине тата сĕртĕнсенех
епле сывалнине Ăна пĕтĕм халăх умĕнче каласа
кăтартнă. 48 Иисус ăна каланă: «Хĕрĕм! Хăюллă пул,
ĕненĕвӳ сана çăлчĕ, канăçлă каях», – тенĕ.
49 Иисус çапла каласа тăнă вăхăтрах синагога
пуçлăхĕн килĕнчен ăна пĕр çын пырса каланă:
«Хĕрӳ вилсе кайрĕ ĕнтĕ, Вĕрентекене ан та
чăрмантар». 50 Анчах та Иисус, çавна илтсенех,
Иаира каланă: «Ан хăра, ĕнен кăна, хĕрӳ çăлăнĕ».
51 Иаир килне пырсан Иисус унта Петрпа Иоансăр,
Иаковсăр тата хĕрĕн ашшĕпе амăшĕсĕр пуçне
никама та кĕме хушман. 52 Пурте хĕршĕн хурланса,
хӳхлесе йĕнĕ. «Ан йĕрĕр, вăл вилмен, çывăрать
кăна», – тенĕ Иисус. 53 Хĕр вилнине пĕлнĕрен вĕсем
Иисусран кулма пуçланă. 54 Вара Иисус пурне те
тухма хушса хĕре аллинчен тытнă та хыттăн
каланă: «Хĕрĕм, тăр!» 55 Унăн чунĕ каялла кĕнĕ те
хĕр çав самантрах тăнă. Иисус ăна апат çитерме
хушнă. 56 Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ питĕ тĕлĕнсе кайнă.
Анчах Иисус вĕсене мĕн пулса иртни çинчен
никама та калама хушман.

*Иисус вун икĕ апостолне вĕрентсе çӳреме ярать*

(Мф. 10:5-15; Мк. 6:7-13)

9 Иисус вара Вун иккĕшне чĕнсе илнĕ те вĕсене
мĕн пур усалсене пăхăнтарма, çынсене чир-
чĕртен сыватма вăй-хăват панă. 2 Унтан вĕсене
Турă Патшалăхĕ çинчен ӳкĕтлесе вĕрентме тата
чирлисене сыватма янă. 3 Вăл вĕсене çапла каланă:
«Хăвăрпа пĕрле çул çине нимĕн те ан илĕр: туя та,
хутаç та, çăкăр та, укçа та, тепĕр кĕпе те. 4 Сире хăш
çуртра хапăл туса йышăнаççĕ, çула тухиччenex
çавăнта пурăнăр. 5 Ăçта та пулин сире йышăнмасан,
çав хуларан тухса кайнă чух, вĕсене
асăрхаттарнине пĕлтерсе, пушмакăр çумĕнчи
тусана та силлесе хăварăр».
6 Вĕренекенĕсем кайнă та ял-хула тăрăх Ырă
Хыпар пĕлтерсе çӳренĕ, пур çĕрте те чирлисене
сыватнă.
7 Иисус мĕн-мĕн туни çинчен Ирод пуçлăх та
илтнĕ. Вара тĕлĕннипе аптăраса кайнă, мĕншĕн
тесен хăшĕ-пĕрисем: «Ку – Шыва кĕртекен Иоанн!
Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă», – тесе калаçнă.
8 Хăшĕсем тата: «Илия пророк тепĕр хут çĕр çине
килчĕ», – тенĕ. «Авалхи пророксенчен пĕри
чĕрĕлсе тăнă пулĕ», – тенĕ тата теприсем. 9 «Иоанн
пуçне эпĕ хамах кастартăм. Ку вара Кам-ши? Ун
çинчен эпĕ тĕлĕнмелле сăмахсем илтетĕп», – тенĕ
Ирод. Вара вăл Иисуса курма майлă вăхăт шыранă.

*Пилĕк пин çынна тăрантарни*

(Мф. 14:13-21; Мк. 6:30-44; Ин. 6:1-14)

10 Апостолсем тавăрăннă та хăйсем мĕн-мĕн
тунине Иисуса каласа кăтартнă. Вара Иисус, Хăйпе
пĕрле вĕсене анчах илсе, Вифсаида ятлă хула
çывăхĕнчи çын çук вырăна кайнă. 11 Анчах та халăх,
çавна пĕлсе, Ун хыçĕнчен пынă. Иисус вĕсене
хапăл тунă, вĕсемпе Турă Патшалăхĕ çинчен
калаçнă, сыватма ыйтакансене сыватнă.
12 Кун каç еннелле сулăна пуçланă. Вара Вун
иккĕшĕ Иисус патне пырса çапла каланă: «Халăха
яр, вĕсем çывăхри ялсене çĕр выртма кайччăр,
апат-çимĕç туянччăр, мĕншĕн тесен кунта çын
пурăнман вырăн». 13 «Çимелли вĕсене эсир хăвăр
парăр», – тенĕ Иисус. «Пирĕн кунта пилĕк çăкăрпа
икĕ пулă анчах, урăх нимĕн те çук! Çак мĕн пур
халăх валли çимелли кайса туянмалла-и вара
пирĕн?» – тенĕ вĕренекенĕсем. 14 Унта пилĕк пин
çынна яхăн пулнă. «Вĕсене аллăшарăн йĕркипе

çерем çине лартса тухăр», – тенĕ Иисус
вĕренекенĕсене. 15 Вĕсем Иисус хушнă пек тунă.
Пурте ларсан, 16 Вăл пилĕк çăкăрпа икĕ пулла илсе
çӳлелле пăхнă та Турра тав тунă. Вара çăкăрпа
пулла халăха валеçмешкĕн вĕренекенĕсене хуçа-
хуçа панă. 17 Пурте тăраниччченех çинĕ, юлнă
татăкĕсене тата вун икĕ кунтăк пухнă.

*Иисус Кам пулнине Петр пĕлтерни*

(Мф. 16:13-19; Мк. 8:27-29)

18 Пĕррехинче Иисус çын çук вырăнта кĕлтунă,
Унпа пĕрле вĕренекенĕсем кăна пулнă. «Çынсем
Мана Кам вырăнне хураççĕ?» – тесе ыйтнă
вĕсенчен Иисус. 19 Вĕренекенĕсем каланă:
«Пĕрисем Сана Шыва кĕртекен Иоанн теççĕ.
Теприсем Илия пророк теççĕ. Хăшĕ-хăшĕ тата
авалхи пророксенчен пĕри чĕрĕлсе тăнă пулĕ тесе
калаçаççĕ». 20 Иисус вĕсенчен çапла ыйтнă: «Эсир
хăвăр Мана Кам вырăнне хуратăр?» «Эсĕ – Турă
Суйласа илни, Христос», – тавăрса каланă Петр.

*Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен калани*

(Мф. 16:20-28; Мк. 8:30–9:1)

21 Анчах Вăл вĕсене çавăн çинчен никама та
калама хушман. 22 Иисус Этем Ывăлĕ нумай асап
курасси çинчен, ятлă-сумлă çынсемпе аслă
священниксем тата саккун вĕрентӳçисем Ăна
йышăнас çукки çинчен, Этем Ывăлне вĕлересси
çинчен, Вăл виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăрасси
çинчен каланă.
23 Унтан Иисус пурне те каланă: «Кам Ман хыççăн
пырас тет, çав хăй çинчен манса, хăйĕн асап
хĕресне йăтса Ман хыççăн пытăр. 24 Мĕншĕн тесен
хăйĕн пурăнăçне упраса хăварас текен ăна çухатĕ.
Хăйĕн пурăнăçне Мана халалласа çухатакан ăна
упраса хăварĕ. 25 Хăйĕн чунне пĕтерсе е сиен туса
пĕтĕм тĕнчене илнинчен этеме мĕн усси? 26 Кам
Манран тата Ман сăмахăмсенчен вăтанать, Этем
Ывăлĕ те Хăйĕн тата Ашшĕн мухтавĕпе, святой
ангелĕсен мухтавĕпе килсен унран вăтанĕ. 27 Чăн
калатăп сире, çакăнта тăракансенчен хăшĕ-
пĕрисем хăйсем виличченех Турă Патшалăхне
курĕç».

*Иисус Христос сăн-сăпачĕ улшăнни*

(Мф. 17:1-8; Мк. 9:2-8)

28 Çапла калани пĕр сакăр кун иртсен, Вăл Петра,
Иоана тата Иакова Хăйпе пĕрле илнĕ те ту çине
кĕлтума хăпарнă. 29 Кĕлтунă чухне Унăн сăн-сăпăчĕ
улшăннă, тумтирĕ чăлт шуралса, йăлтăртатса
кайнă. 30 Çавăнтах икĕ арçын Иисуспа калаçса тăнă:
пĕри – Моисей, тепри Илия пулнă, 31 вĕсене те
мухтавлă çутă хупăрласа тăнă. Вĕсем Христосăн
Иерусалимра вилмелле пуласси çинчен калаçнă.
32 Петрпа унăн юлташĕсем ыйхă пуснипе аптăранă.
Вăрансан вĕсем мухтавлă çутăри Иисуса тата Унпа
юнашар тăракан икĕ çынна курнă. 33 Çав çынсем
Иисус патĕнчен кайсан Петр, хăй мĕн каланине
ăнланмасăр, Иисуса çапла каланă: «Вĕрентекен!
Епле аван пире кунта. Атьăр эпир виçĕ хӳшĕ тăвар:
пĕрне – Сан валли, теприне – Моисей валли тата
теприне – Илия валли». 34 Вăл çапла каласа тăнă чух
вĕсене пĕлĕт пырса хупăрласа илнĕ. Пĕлĕт ăшне
пулсан вĕренекенĕсем питĕ хăраса ӳкнĕ.
35 Пĕлĕтрен вара: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм! Ăна
итлĕр!» – текен сасă илтĕннĕ.
36 Çав сасă шăплансан Иисус каллех пĕчченех
юлнă. Вĕренекенĕсем вара хăйсем мĕн курни
çинчен çав кунсенче никама та каламан.

*Усал сывлăш ернĕ ачана сыватни*

(Мф. 17:14-18; Мк. 9:14-27)

37 Тепĕр кунне, вĕсем ту çинчен ансан, Иисуса тем
чухлĕ халăх кĕтсе илнĕ. 38 Халăх хушшинчен
сасартăк пĕр çын кăшкăрса янă: «Эй, Вĕрентекен!
Сана йăлăнатăп, ман ывăлăма пырса пăхсам, вăл
манăн пĕртен-пĕр ача! 39 Ăна усал сывлăш çулса
илет те, вăл шари кăшкăрса ярать, вара хутлатса
лартнипе çăварĕнчен кăпăк кăларма пуçлать;
ачана вĕлересле асаплантарсан тин усал сывлăш
аран-аран лăпланать. 40 Ăна хăваласа кăларма эпĕ
Санăн вĕренекенӳсенчен ыйтрăм, анчах вĕсем
пултараймарĕç». 41 «Эх, ĕненмен, пăсăк ăру! Тата
хăçанччен Эпĕ сирĕнпе пулăп, хăçанччен тӳссе
тăрăп сире? Хăвăн ывăлна илсе кил кунта», –
тавăрса каланă Иисус. 42 Ача утса пынă чухнех усал
ăна çĕре ӳкернĕ те чĕтретме пуçланă. Анчах та
Иисус, усал сывлăша чарса, ачана сыватнă та
ашшĕне панă.
43 Пĕтĕм халăх Турă аслăлăхĕнчен тĕлĕннĕ.

*Иисус Хăй вилсе чĕрĕлесси çинчен тепĕр хут калани*

(Мф. 17:22-23; Мк. 9:30-32)

Иисус мĕн тунинчен çапла пурте тĕлĕнсе тăнă чух
Вăл вĕренекенĕсене каланă: 44 «Çак сăмахăмсене
эсир лайăх астуса юлăр: Этем Ывăлне çынсен
аллине тытса парĕç». 45 Анчах та çак сăмаха вĕсем
ăнланман. Иисус калани вĕсемшĕн пытарăнчăк
пулнăран вĕсем ăна пĕлеймен, Хăйĕнчен вара
çавăн çинчен ыйтма хăранă.

*Кам аслăрах*

(Мф. 18:1-5; Мк. 9:33-37)

46 «Пирĕнтен хăшĕ аслăрах?» – тесе шухăшлама
пуçланă вĕренекенĕсем. 47 Иисус, вĕсен пуçĕнчи
шухăша пĕлсе, пĕр ачана Хăй умне илсе пырса
тăратнă та 48 вĕсене çапла каланă: «Кам çак ачана
Ман ятăмшăн хапăл тăвать, вăл Мана йышăнать.
Мана хапăл тăвакан Мана кунта Яракана
йышăнать. Сирĕнтен кам хăйне кĕçĕне хурать, çав
аслă пулĕ».
49 «Вĕрентекен, эпир Сан ятупа усалсене хăваласа
кăларакан çынна тĕл пултăмăр. Вăл пирĕнпе пĕрле
çӳремен пирки эпир Ăна чартăмăр», – тенĕ Ăна
çавăн чухне Иоанн. 50 «Ан чарăр ăна, кам сире
хирĕç мар, çав сире майлă», – хуравланă Иисус.

### Этем Ывăлĕ пĕтерме мар, çăлма килнĕ

51 Иисуса ку тĕнчерен илес вăхăт çывхарса пынă
май Вăл хăюллăнах Иерусалима кайма шутланă.
52 Вăл вара Хăй умĕнчен хыпарлама
вĕренекенĕсене янă. Лешсем кайнă та Иисус пынă

çĕре вырăн хатĕрлеме Самарири пĕр яла кĕнĕ.
53 Анчах ял халăхĕ Иисуса унта кĕртмен, мĕншĕн
тесен Вăл çынсене Иерусалима кайма тухнă çул
çӳревçĕ пек туйăннă. 54 Çавна курсан Унăн
вĕренекенĕсем Иаковпа Иоанн çапла каланă:
«Хуçамăр! Кăмăлу пулсан, тӳперен вут-çулăм
антарса пирĕн те çак яла Илия тунă пекех çунтарса
ямалла мар-и?» 55 Анчах та Иисус вĕсем еннелле
çавăрăннă та чарса çапла каланă: «Чун-чĕрĕрсем
мĕнле Сывлăшпа тулнине те пĕлместĕр. 56 Этем
Ывăлĕ çын чунне пĕтерме килмен, çăлма килнĕ ».
Унтан вĕсем тепĕр яла кайнă.

*Иисус хыçĕнчен пырасси*
(Мф. 8:19-22)

57 Вĕсем çулпа пынă чух пĕр çын Иисуса каланă:
«Хуçамăр! Эсĕ кирек ăçта кайсан та, эпĕ Сан хыççăн
пыракан пулăп». 58 Иисус ăна хирĕç: «Тиллĕн те
шăтăкĕ пур, вĕçен кайăкăн та йăви пур, Этем
Ывăлĕн кăна пуçне хурса канмалăх вырăнĕ çук», –
тенĕ. 59 «Ман хыçăмран пыракан пул», – тенĕ Вăл
тепĕр çынна. Лешĕ вара çапла каланă: «Хуçамăр!
Ирĕк парсамччĕ: вилнĕ аттене кайса пытарам
малтан». 60 «Вилнĕ çыннисене вилĕмлисемех
пытарччăр. Эсĕ вара кай та Турă Патшалăхĕ çинчен
пĕлтерсе çӳре», – тенĕ ăна Иисус. 61 «Хуçамăр, эпĕ
Сан хыçăнтан пырăп, анчах малтан Эсĕ мана
килтисемпе сывпуллашма ирĕк парсамччĕ», – тенĕ
Ăна тата тепри. 62 «Сухапуç тытсан каялла
çавăрăнса пăхакан Турă Патшалăхĕшĕн шанчăклă
мар», – тавăрнă Иисус.

## Çитмĕл вĕренекенне Ырă Хыпар пĕлтерме яни

10 Çавăн хыççăн Хуçамăр татах тепĕр çитмĕл
вĕренекен суйласа илнĕ. Вара вĕсене Хăйĕн
умĕнчен икшерĕн-икшерĕн Хăй кайма шухăшланă
хуласемпе ялсене янă. 2 Иисус вĕсене çапла каланă:
«Вырмалли нумай та, выраканĕ сахал. Çапла ĕнтĕ,
ани çине выраканĕсене ятăр тесе, ана Хуçине
йăлăнăр. 3 Кайăр, Эпĕ сире кашкăрсем хушшине
путексене янă пек яратăп. 4 Хăвăрпа пĕрле укçа
енчĕкĕ те, хутаç та, урана тăхăнмалли те ан илĕр.
Çул çинче чарăнса никампа та калаçса ан тăрăр.
5 Мĕнле те пулин çурта кĕрсен эсир малтан: „Çак
кил-йыша канăçлăх пултăр!“ – тесе саламлăр. 6 Унта
канăçлăх çынни пулсан, сирĕн канăçлăхăр ун чунне
кĕрĕ. Канăçлăх çынни пулмасан, эсир ырă сунни
хăвăрах тавăрăнĕ. 7 Хăвăра хапăлласа йышăннă
çуртрах пурăнăр, мĕн сĕнеççĕ, çавна ĕçсе çийĕр.
Мĕншĕн тесен ĕçлекен çын хăй ĕçĕшĕн тӳлев илме
тивĕçлĕ. Пĕр çуртран тепĕр çурта куçса ан çӳрĕр.
8 Эсир мĕнле те пулин хулана пырсан, унта сире
хапăл туса мĕн çиме парĕç, çавна çийĕр. 9 Унти
чирлĕ çынсене сыватăр, „Сирĕн патăра Турă
Патшалăхĕ çывхарчĕ“, – тейĕр вĕсене. 10 Енчен те
сире пĕр-пĕр хулара хапăл тумасан, эсир çав хула
урамĕсем тăрăх çапла каласа çӳрĕр: 11 „Акă сирĕн
хулăрта пушмак çумне çыпçăннă тусана та хăвăр
патăртах силлесе хăваратпăр. Çапах та эсир Турă
Патшалăхĕ çывхарнине пĕлсе тăрăр!“ – тейĕр.
12 Калатăп сире: суд кунĕнче Содома та çав хуларан
çăмăлтарах пулĕ».

*Ĕненмен хуласене асăрхаттарни*
(Мф. 11:20-24)

13 «Хуйхă пулĕ сана, Хоразин! Хуйхă пулĕ сана,
Вифсаида! Эсир курнă хăватсене Тирпа Сидонра
кăтартнă пулсан вĕсем тахçанах хуйхă тумтирĕ
тăхăнса, хурланса çылăхĕсенчен ӳкĕннĕ пулĕччĕç.
14 Çавăнпа судра Тирпа Сидон хулисене сирĕнтен
çăмăлтарах пулĕ. 15 Санăн та, хăвна тӳпе таранах
мăнна хуракан Капернаум хули, тамăк тĕпнех анса
каймалла пулĕ. 16 Сире итлекен Мана итлет, сире
йышăнманни Мана йышăнмасть. Мана йышăнман
çын Мана кунта Яракана йышăнмасть».

## Çитмĕл вĕренекенĕ тавăрăнни

17 Çитмĕл вĕренекенĕ савăнса тавăрăннă та
Иисуса каланă: «Хуçамăр! Сан ятна асăнсанах пире
усалсем те пăхăнаççĕ». 18 Иисус вĕсене çапла
каланă: «Шуйттан пĕлĕт çинчен çиçĕм пек ӳкнине
Эпĕ куртăм. 19 Акă Эпĕ сире çĕленсене,
скорпионсене таптама, тăшманăн мĕн пур вăйне
çĕнтерме хăват паратăп. Сире ĕнтĕ нимĕн те сиен
тăваймĕ. 20 Çапах эсир усал сывлăшсем хăвăра
пăхăннишĕн мар, тӳпере хăвăр ятăрсем
çырăннишĕн савăнăр».

*Иисус савăнса кĕлтуни*
(Мф. 11:25-27; 13:16-17)

21 Çав вăхăтрах Иисус кăмăлĕпе çĕкленсе çапла
каланă: «Эй, Аттем, çĕрпе пĕлĕт Хуçи! Эсĕ çакна
ăслă-тăнлисенчен пытарса ача пек айваннисене
пĕлмелле тунăшăн Сана мухтатăп. Çапла, Аттем!
Санăн ырă ирĕкӳ çавнашкал пулнă». 22 Унтан
вĕренекенĕсем еннелле çавăрăннă та: «Аттем Мана
йăлтах панă. Ывăлĕ камне Ашшĕсĕр пуçне никам та
пĕлмест. Ашшĕ камне те Ывăлĕсĕр пуçне никам та
пĕлмест, Ывăлĕ пĕлтерес тесен анчах пĕлĕç», –
тенĕ.
23 Унтан Вăл, вĕренекенĕсем енне çавăрăнса,
вĕсене çеç илтмелле каланă: «Сирĕн куçăрсем мĕн
курнине куракан çын телейлĕ. 24 Калатăп сире:
пророксем те, патшасем те нумайăшĕ эсир мĕн
курнине курасшăнччĕ те – кураймарĕç, эсир мĕн
илтнине илтесшĕнччĕ те – илтеймерĕç».

## Ырă кăмăллă Самари çынни çинчен каланă ытарлăх

25 Çавăн чухне пĕр çын, саккун вĕрентӳçи, мала
тухнă та Иисуса илĕртсе тĕрĕслес тесе çапла ыйтнă:
«Вĕрентекен! Ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулас тесен
манăн мĕн тумалла?» 26 «Саккунра мĕн çырнă? Эсĕ
ăна вуланă вĕт-ха», – тенĕ Иисус. 27 Лешĕ çапла
хуравланă: «Хуçа Турруна пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм
чунран, пĕтĕм вăй-халтан, пĕтĕм ăс-халтан юрат.
Çывăх çыннуна хăвна юратнă пек юрат». 28 Иисус
ăна хирĕç: «Эсĕ тĕрĕс каларăн. Çапла ту, вара
ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулăн», – тенĕ. 29 Анчах та

саккун вӗрентӳҫи хӑйне тӳрре кӑларасшӑн
Иисусран татах ыйтнӑ: «Ман ҫывӑх ҫыннӑм кам?»
30 Иисус ӑна ҫапла тавӑрса каланӑ: «Пӗр ҫын
Иерусалимран Иерихона кайма тухнӑ. Ҫул ҫинче
ӑна вӑрӑ-хурахсем тапӑннӑ та ҫаратса, хӗнесе
пӗтернӗ. Унтан вилес патне ҫитнӗскерне пӑрахса
хӑварнӑ. 31 Ӑнсӑртран ҫав ҫулпа пӗр священник
иртсе пынӑ. Вӑл, аманнӑ ҫынна курсан, айккинчен
пӑрӑнса кайнӑ. 32 Кӑшт тӑрсан ҫав вырӑна левит
ҫитнӗ. Вӑл патнерех пырса пӑхнӑ та ҫавнашкалах
пӑрӑнса иртсе кайнӑ. 33 Ҫав ҫулпах пӗр Самари
ҫынни ашакпа пынӑ. Мӗскӗне курсассӑн вӑл питӗ
шелленӗ. 34 Вара унӑн суранӗсене эрехпе олив ҫӑвӗ
сӗрсе, эмеллесе ҫыхнӑ. Унтан ӑна ашакӗ ҫине
лартнӑ та хӑна ҫуртне илсе кайнӑ. Хӑна ҫуртӗнче те
вӑл уншӑн тӑрӑшнӑ. 35 Тепӗр кунне, хӑй тухса каяс
умӗн, хӑна ҫурчӗн хуҫине вӑл икӗ динарий панӑ та:
„Эсӗ ҫак ҫынна пӑх-ха. Ку укҫа ҫитмесен, эпӗ каялла
тавӑрӑннӑ чух уншӑн сана татах тӳлӗп“, – тенӗ.
36 Эсӗ мӗнле шутлатӑн ӗнтӗ? – ыйтнӑ Иисус унран. –
Вӑрӑ-хурахсен аллине лекнӗ ҫыншӑн ҫав
виҫҫӗшӗнчен хӑшӗ ҫывӑххи пулнӑ?» 37 «Ӑна
хӗрхенсе пулӑшаканни», – тенӗ саккун вӗрентӳҫи.
Вара Иисус ӑна ҫапла каланӑ: «Кай та эсӗ те ҫапла
ту».

### Иисус Марфӑпа Мария патӗнче

38 Ҫулпа малалла пынӑ чухне Иисус Хӑйӗн
вӗренекенӗсемпе пӗр яла кӗнӗ. Унта Ӑна Марфа
ятлӑ пӗр хӗрарӑм хӑй килне чӗнсе кӗртнӗ. 39 Унӑн
Мария ятлӑ йӑмӑкӗ пулнӑ. Вӑл Иисус ури патне
пырса ларнӑ та Ун сӑмахӗсене итлеме пуҫланӑ.
40 Марфа вара хӑнана чаплӑрах ӗҫтерсе ҫитересчӗ
тесе тӑрӑшнӑ. Унтан вӑл Иисус патне пынӑ та ҫапла
каланӑ: «Хуҫамӑр! Йӑмӑк мана пӗчченех
ӗҫлеттерни Сана нимех те мар-и? Мана пулӑшма
кала-ха ӑна!» 41 «Эй, Марфа, Марфа, – тесе
хуравланӑ Иисус, – эсӗ нумайшӑн чӑрманса,
хыпкаланса ҫӳретӗн, кирли вара пӗрре кӑна. Мария
чи кирлине суйласа илчӗ, ҫавна унран никам та
туртса илеймӗ».

*Иисус кӗлтума вӗрентни*
(Мф. 6:9-15; 7:7-11)

11 Пӗррехинче Иисус кӗлтунӑ. Кӗлтуса пӗтерсен
пӗр вӗренекенӗ Унран: «Хуҫамӑр, Иоанн
хӑйӗн вӗренекенӗсене вӗрентнӗ пек, пире те
кӗлтума вӗрент-ха», – тесе ыйтнӑ. 2 Иисус вӗсене
каланӑ: «Кӗлтунӑ чухне эсир ҫапла калӑр:
„Эй, Ҫӳлти Аттемӗр! Санӑн яту хисеплентӗр; Санӑн
Патшалӑху килтӗр; Санӑн ирӗкӳ ҫӗр ҫинче те ҫӳлти
пекех пултӑр ; 3 куллен пире пурӑнмалӑх ҫӑкӑр пар,
4 пирӗн ҫылӑхсене каҫар: эпир те хамӑра парӑмлӑ
пулнисене кирек кама та каҫаратпӑр; ҫылӑха ан
кӗрт пире, усалтан хӑтар пире “, – тейӗр».
5 Иисус татах вӗсене каланӑ: «Акӑ, тӗслӗхрен,
сирӗн хушшӑрта камӑн та пулин пӗр тусӗ пултӑр.
Вӑл ун патне ҫур ҫӗр тӗлӗнче пытӑр та: „Тусӑм, мана
кивҫен виҫӗ ҫӑкӑр пар-ха, 6 ҫула май ман пата
юлташ кӗчӗ те, манӑн ӑна хӑналама нимӗн те ҫук“,
– тесе ыйттӑр. 7 Тусӗ шалтан ӑна хирӗҫ: „Ан
чӑрмантарса ҫӳре! Эпӗ алӑксене питӗрнӗ ӗнтӗ,
ачасем те вырӑн ҫинче хампа пӗрле ҫывӑраҫҫӗ.
Тӑрса ҫӑкӑр параймастӑп сана“, – тетӗр. 8 Калатӑп
сире: вӑл ӑна туслӑ пулнишӗн тӑрса парас темесен
те, лешӗ тимлесе йӑлӑннине кура, вырӑнӗ ҫинчен
тӑрӗ те ӑна ыйтнӑ чухлӗ парӗ. 9 Эпӗ те сире
калатӑп: ыйтӑр – вара сире парӗҫ, шырӑр – вара
тупӑр, шаккӑр – вара сире уҫӗҫ. 10 Мӗншӗн тесен
кашни ыйтакан илет, шыракан та тупать,
шаккакана та уҫаҫҫӗ. 11 Сирӗн хушшӑрта ҫӑкӑр
ыйтакан ывӑлне чул паракан ашшӗ пур-и? Е пулӑ
ыйтсан, пулӑ вырӑнне ӑна ҫӗлен параканӗ пур-и?
12 Е ҫӑмарта ыйтакан ывӑлне скорпион паракан
ашшӗ пур-и? 13 Ҫапла ӗнтӗ эсир, усал пулин те,
ачӑрсене ырӑ япала пама пӗлетӗр пулсан, Ҫӳлти
Аҫӑр Хӑйӗнчен ыйтакансене Святой Сывлӑшне
паратех».

*Усалсене Иисус мӗнле хӑватпа хӑваласа кӑларать?*
(Мф. 12:22-30; Мк. 3:20-27)

14 Пӗррехинче Иисус чӗлхесӗр тӑвакан усала ҫын
ӑшӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Усалӗ тухсан чӗлхесӗр
ҫын калаҫма пуҫланӑ; вара халӑх тӗлӗнсех кайнӑ.
15 «Усалсене Вӑл усалсен пуҫлӑхӗн, Веельзевулӑн ,
хӑвачӗпе хӑваласа кӑларать!» – тенӗ хӑшӗ-пӗрисем.
16 Теприсем тата, Иисуса тӗрӗслес тесе, тӳперен
хӑват кӑтартма хистесех ыйтнӑ. 17 Анчах та Иисус,
ҫынсен шухӑшӗсене пӗлсе, вӗсене ҫапла каланӑ:
«Кирек мӗнле патшалӑх та хирӗҫсе-пайланса
кайсан пушанса юлать. Кил-йыш та хирӗҫсе-
пайланса кайсан арканать. 18 Шуйттан та хӑйпе хӑй
хирӗҫет пулсан, унӑн патшалӑхӗ епле тытӑнса
тӑрайтӑр? Эсир вара Мана усалсене Веельзевул
хӑвачӗпе хӑваласа кӑларать тетӗр. 19 Эпӗ усалсене
Веельзевул хӑвачӗпе хӑваласа кӑларатӑп пулсан,
апла сирӗн халӑх ывӑлӗсем вӗсене кам хӑвачӗпе
хӑваласа кӑлараҫҫӗ? Ҫавӑнпа сире суд тӑвакансем
те вӗсемех пулӗҫ. 20 Эпӗ усалсене Турӑ хӑвачӗпе
хӑваласа кӑларатӑп пулсан, эппин, паллах, сирӗн
патӑра Турӑ Патшалӑхӗ ҫитнӗ пулать. 21 Вӑйлӑ ҫын
хӑйӗн ҫуртне хӗҫпе хуралланӑ чухне унӑн пурлӑхӗ
шанчӑклӑ упранса тӑрать. 22 Анчах та хӑйӗнчен те
вӑйлӑраххи ӑна тапӑнса ҫӗнтерсен, вӑл унӑнне
шанса тӑнӑ хӗҫӗ-сӑннине йӑлтах туртса илӗ,
ҫаратнӑ пурлӑхне салатса пӗтерӗ. 23 Кам Ман майлӑ
мар, вӑл Мана хирӗҫ. Кам Манпа пӗрле пухмасть,
вӑл салатса пӗтерет.
24 Ҫын ӑшӗнчен тухсан усал сывлӑш канлӗх
шыраса шывсӑр вырӑнсенче ҫапкаланса ҫӳрет.
Вара хӑй валли вырӑн тупаймасӑр: „Хам тухнӑ
ҫуртӑма каялла тавӑрӑнам-ха“, – тет. 25 Унтан
тавӑрӑнать те тирпейлесе тасатнӑ ҫурт курать.
26 Вара вӑл каять те хӑйпе пӗрле хӑйӗнчен те
усалтарах тепӗр ҫичӗ сывлӑша ертсе пырать.
Ҫавӑнтах вӗсем ун ӑшне кӗрсе пурӑнма пуҫлаҫҫӗ.
Ҫав ҫынна вара малтанхинчен те начартарах
пулать».

27 Иисус çапла каласа тăнă чухне пĕр хĕрарăм
халăх хушшинчен: «Сана çуратса кăкăр çитернĕ
Аннӳ телейлĕ!» – тесе кăшкăрнă. 28 «Турă сăмахне
илтекенсем, ăна пурнăçлакансем телейлĕ», – тенĕ
вара Иисус.

*Хăват кăтартма ыйтни*

(Мф. 12:38-42; Мк. 8:12)

29 Халăх йышлăн пуçтарăнсан Иисус çапла калама
пуçланă: «Çак усал ăру хăватшăн антăхать, анчах та
Иона пророк хăвачĕсĕр пуçне ăна нимĕнле хăват
та пулмĕ. 30 Иона Ниневи çыннисемшĕн мĕнле
хăват пулнă, Этем Ывăлĕ те çак ăрушăн çаплах
пулĕ. 31 Суд кунĕ çитсен кăнтăрти çĕр-шыври
хĕрарăм патша çак ăру çыннисемпе пĕрле чĕрĕлсе
тăрĕ те вĕсене айăплĕ, мĕншĕн тесен вăл Соломон
ăслăлăхне итлеме тĕнче хĕрринченех килнĕ пулнă.
Акă халĕ кунта Соломонран та Аслăраххи пур. 32 Суд
кунĕ çитсен Ниневи çыннисем çак ăрупа пĕрле
чĕрĕлсе тăрĕç те ăна айăплĕç, мĕншĕн тесен вĕсем
Иона ӳкĕтленине илтсен ӳкĕннĕ пулнă. Акă халĕ
кунта Ионăран та Аслăраххи пур».

*Куç – ӳт-пӳ çутаткăçĕ*

(Мф. 5:15; 6:22-23)

33 «Çутаткăç çутсан ăна никам та курăнман вырăна
е чӳлмекпе хупласа лартмасть; пӳрте кĕрекенсем
çутăра курччăр тесе ăна çутаткăç лартмалли çине
вырнаçтарать. 34 Куç – ӳт-пӳ çутаткăçĕ. Çавăнпа ĕнтĕ
санăн куçу таса пулсан пĕтĕм ӳт-пĕвӳ те çутă пулĕ.
Эсĕ таса мар куçлă пулсан санăн ӳт-пĕвӳ те тĕксĕм
пулĕ. 35 Çапла вара, асăрхан: сан ăшунти çутту
тĕттĕм мар-и? 36 Санăн ӳт-пĕвӳ пĕтĕмпех çутă
пулсан, пĕр пайĕ те тĕксĕм мар пулсан, вара сана
çутаткăç хăйĕн çутипе çутатнă пек, санăн пурте çутă
пулĕ».

*Фарисейсемпе саккун вĕрентӳçисене питлени*

(Мф. 23:1-36; Мк. 12:38-40; Лк. 20:45-47)

37 Çакна каланă чухне пĕр фарисей Ăна хăй патне
кăнтăрлахи апат тума чĕннĕ. Фарисей килне
пырсан Иисус çиме ларнă. 38 Апат çиес умĕн Вăл
аллине çуманнине курсан фарисей питĕ тĕлĕннĕ.
39 Анчах та Хуçамăр ăна çапла каланă: «Акă эсир,
фарисейсем, чашăк-тирĕк тулашне тасататăр,
анчах ăшăр-чикĕр çăткăнлăхпа, усаллăхпа тулнă.
40 Ăссăрсем! Тулашне Кам пултарнă, ăшне те Çавах
пултарман-и вара? 41 Тиркесе лариччен хăвăрăн
мул чашăкĕнчен чухăнсене уйăрса парăр, вара
сирĕн пурте таса пулĕ.

42 Фарисейсем, хуйхă пулĕ сире! Эсир пĕтнĕк
курăкĕн, çу курăкĕн тата тĕрлĕ пахча çимĕçĕн
вуннăмĕш пайне Турăшăн паратăр, анчах тĕрĕслĕх
çинчен, Турă юратăвĕ çинчен шухăшламастăр.
Сирĕн çакна та туса тăмалла, лешне те манмалла
мар. 43 Фарисейсем, хуйхă пулĕ сире! Эсир
синагогăра малта ларма юрататăр, халăх йышлă
çĕрте хăвăра саламланине килĕштеретĕр. 44 Саккун
вĕрентӳçисемпе фарисейсем, икĕ питлĕскерсем,
хуйхă пулĕ сире! Эсир – манăçнă масарти тупăксем
евĕрлĕ. Çынсем вĕсем çинче утса çӳреççĕ, анчах
мĕн çинче утса çӳренине пĕлмеççĕ».

45 Çак сăмахсене илтсен саккун вĕрентӳçисенчен
пĕри Ăна: «Вĕрентекен, кун пек каласа Эсĕ пире те
кӳрентеретĕн», – тенĕ. 46 Анчах та Иисус тата çапла
каланă: «Сире те, саккун вĕрентӳçисем, хуйхă пулĕ,
мĕншĕн тесен эсир çынсем çине чăтма çук йывăр
çĕклем хуратăр, анчах та хăвăр пӳрнĕре те
хускатмастăр. 47 Хуйхă пулĕ сире! Эсир пророксем
валли капăр тупăклăхсем тăвататăр та-ха, анчах та
вĕсене сирĕн мăн асларăрсем вĕлернĕ-çке! 48 Çапла
туса эсир хăвăр мăн асларăрсен ĕçне ырланине
çирĕплететĕр; вĕсем пророксене вĕлернĕ, эсир
пророксем валли тупăклăхсем тăватăр. 49 Турă
ăслăлăхĕ çапла каланă ĕнтĕ: „Вĕсем патне Эпĕ
пророксене, апостолсене ярăп. Пĕрисене вĕсем
вĕлерĕç, теприсене хăваласа ярĕç“. 50 Çавăнпа ĕнтĕ
тĕнчене пултарнăранпа юхнă пур пророксен
юнĕшĕн те çак ăру айăпа юлĕ. 51 Авель юнĕнчен
пуçласа Турă Çурчĕн картишĕнче, парне вырăнĕ
умĕнче, вĕлернĕ Захария юнĕ таранах çак ăрăвăн
явап тытмалла пулĕ. Чăн калатăп сире: вĕсемшĕн
пĕтĕмпех çак ăру çыннисем айăпа юлĕç. 52 Саккун
вĕрентӳçисем, хуйхă пулĕ сире! Эсир пĕлӳлĕхĕн
çăраççине хăвăр алла илнĕ те, хăвăр та кĕместĕр,
кĕрес текенсене те кĕртместĕр».

53 Çак сăмахсене каланă чухне саккун
вĕрентӳçисемпе фарисейсем Ăна хĕстерсех
çитернĕ, нумай ыйту çине хурав пама хистенĕ,
54 Хăйĕн çăварĕнчен тухакан сăмахпа Хăйнех
айăпламашкăн сăлтав тупма тăрăшнă.

## Икĕпитлĕхрен асăрхаттарни

12 Çав хушăра унта темиçе пин çын пуçтарăннă,
тăвăр пулнипе вĕсем пĕр-пĕрне хĕстернĕ.
Иисус вара Хăйĕн вĕренекенĕсем енне çавăрăнса
çапла каланă: «Фарисейсен кăвас тĕпĕнчен – вĕсен
икĕпитлĕхĕнчен – сыхланăр. 2 Пытарса хăварни те
çиеле тухатех, вăрттăнни те паллă пулатех.
3 Çавăнпа эсир тĕттĕмре мĕн каланине çутă çĕрте
илтĕç. Шалти пӳлĕмре хăлхаран каланине те ял
илтмелле кăшкăрĕç».

*Камран хăрамалла*

(Мф. 10:28-31)

4 «Сире, Хамăн тусăмсене, калатăп: ӳт-пĕве
пĕтерекенсенчен ан хăрăр, вĕсем сире унтан ытла
нимĕн те тăваймĕç. 5 Камран хăрамаллине калам:
вĕлерсен тамăка пăрахма пултараканран хăрăр.
Чăн калатăп сире, çавăнтан хăрăр. 6 Пилĕк пĕчĕкçĕ
вĕçен кайăка икĕ ассарийлĕхе сутмаççĕ-и? Çапах та
Турă вĕсене пĕрне те манмасть. 7 Сирĕн пуçăр
çинчи çӳç пĕрчисем те пĕтĕмпех шутра. Çавăнпа
ĕнтĕ ан хăрăр: эсир, паллах, пĕчĕкçĕ вĕçен кайăк
йышĕнчен хаклăрах».

*Çынсем умĕнче Христос çинчен каласа парасси*

(Мф. 10:32-33; 12:32; 10:19-20)

8 «Калатăп сире: кам та кам халăх умĕнче Мана
ĕненнине пĕлтерет, Этем Ывăлĕ те Туррăн
ангелĕсем умĕнче çав çын çинчен пĕлтерĕ. 9 Кам
халăх умĕнче Мана пĕлмĕш пулать, ăна хăйне те

Туррӑн ангелӗсем умӗнче пӗлмӗш пулӗҫ. 10 Этем
Ывӑлне хирӗҫ сӑмах калакана кирек кама та
каҫарӗҫ, анчах Святой Сывлӑша хурлакана
каҫармӗҫ. 11 Сире айӑплама синагогӑсене,
пуҫлӑхсемпе влаҫсем патне илсе пырсан, епле
хуравлас, мӗн тавӑрса калас тесе ан кулянӑр,
12 мӗншӗн тесен ҫав самантра мӗн каламаллине
сире Святой Сывлӑш вӗрентӗ».

### Ӑссӑр пуян ҫинчен каланӑ ытарлӑх

13 Халӑх хушшинчен пӗр ҫын Иисуса каланӑ:
«Вӗрентекен, манӑн пиччене кала-ха, аттерен юлнӑ
пурлӑха вӑл мана та уйӑрса патӑр». 14 Иисус ҫав
ҫынна: «Эй, этем! Мана сире суд тума е пурлӑхӑра
уйӑрма лартнӑ-им?» – тенӗ. 15 Унтан Вӑл халӑха
ҫапла каланӑ: «Асӑрханӑр, пуянлӑха ан хапсӑнӑр,
мӗншӗн тесен ҫыннӑн пурӑнӑҫӗ пурлӑх
нумаййинчен килмест».
16 Иисус вӗсене ҫапла ытарлӑх каласа панӑ: «Пӗр
пуян ҫыннӑн хирӗнче тырӑ питӗ ӑнса пулнӑ. 17 Вара
вӑл: „Ман ӗнтӗ мӗн тӑвас-ши? Вырса пуҫтарнӑ
тырра усрама вырӑн ҫитмест“, – тесе шухӑшланӑ.
18 Унтан ҫапла шут тунӑ: „Акӑ мӗн тӑвӑп. Ампарсене
пӑсса пысӑкраххисем туса лартӑп. Вара пӗтӗм
тырра, мӗн пур пуянлӑха ҫавӑнта пуҫтарса хурӑп.
19 Кайран хама: санӑн пурлӑху нумай ӗнтӗ, темиҫе
ҫула ҫитмелӗх те выртать. Ӗҫсе ҫи те савӑнса кан!“ –
тейӗп. 20 Анчах Турӑ ӑна каланӑ: „Эй, ӑссӑр! Кӗҫӗрех
сан чунна илӗҫ. Эсӗ хатӗрлесе хуни кама юлӗ?“
21 Турӑ умӗнче сумлӑ пулас вырӑнне хӑйшӗн мул
пухакан кашни ҫынпах ҫапла пулӗ».

*Ҫӳлти Аҫӑра шанӑр*
(Мф. 6:25-34, 19-21)

22 «Ҫавӑнпа Эпӗ сире калатӑп, – тенӗ Иисус Хӑйӗн
вӗренекенӗсене, – чуна усрамалӑх ӗҫме-ҫиме
пирки те, кӗлеткене тӑхӑнмалӑх тумтир пирки те ан
кулянӑр. 23 Чун – апат-ҫимӗҫрен, кӗлетке тумтиртен
пахарах! 24 Ҫӑхансем ҫине пӑхӑр-ха: вӗсем акмаҫҫӗ,
вырмаҫҫӗ; вӗсен ампарӗ те, кӗлечӗ те ҫук, ҫапах
вӗсене Турӑ тӑрантарать. Эсир вӗҫен кайӑксенчен
мӗн чухлӗ пахарах! 25 Хӑй тӑрӑшнипе сирӗнтен
хӑшӗ шит чухлӗ те пулин ӳсме пултарайӗ? 26 Ҫапла
вара, пӗчӗкҫӗ ӗҫе те тӑваймастӑр пулсан, ыттишӗн
мӗн кулянатӑр эппин? 27 Чечексем епле ӳснине
сӑнӑр-ха. Вӗсем тертленсе ҫип арламаҫҫӗ, анчах та
сире акӑ мӗн калатӑп: тем тери чаплӑ пулнӑ пулин
те, Соломон патша пӗр хир чечекӗ чухлӗ те
тумланайман. 28 Эй, ҫителӗксӗр ӗненененекенсем!
Паян пур та ыран вута кӑна пӑрахмалли хирти
курӑка та Турӑ ҫапла ҫи-пуҫ парать пулсан, сире
тата ытларах памӗ-и? 29 Ҫапла вара, мӗн ӗҫес-ши,
мӗн ҫиес-ши тесе ан тӑрмашӑр, ан пӑшӑрханӑр.
30 Ҫавсемшӗн пуриншӗн те ҫак тӗнче ҫыннисем
тӑрӑшаҫҫӗ. Вӑл япаласем сире кирлине вара Ҫӳлти
Аҫӑр ахалех пӗлсе тӑрать. 31 Эсир чи малтан Турӑ
Патшалӑхне ӑнтӑлса шырӑр, ытти вара сирӗн пурте
пулӗ. 32 Эй, пӗчӗк кӗтӗвӗм, ан хӑра! Аҫӑр сире
Патшалӑх пама кӑмӑл тунӑ. 33 Хӑвӑрӑн пурлӑхӑра
сутӑр та чухӑнсене пулӑшӑр. Вара хӑвӑршӑн тӳпере
арканми арча, иксӗлми пурлӑх хатӗрлесе хурӑр.
Унта вӑрӑ та пымасть, кӗве те ҫимест. 34 Сирӗн
пурлӑхӑр ӑҫта, чун-чӗрӗр те ҫавӑнтах пулӗ».

*Сыхӑ пулма калани*
(Мф. 24:45-51)

35 «Яланах хатӗр пулӑр, сирӗн ҫутаткӑҫсем ҫунса
тӑччӑр; 36 эсир хуҫи туйиран тавӑрӑнасса кӗтекен
ҫынсем пек пулӑр. Вӑл пырса шаккасан вӗсем
ҫавӑнтах ӑна алӑк уҫса кӗртеҫҫӗ. 37 Хӑйсен хуҫине
кӗтсе хатӗр тӑракан чурасем телейлӗ! Чӑн калатӑп
сире: хуҫи тавӑрӑнӗ те пилӗкне ҫыхса вӗсене сӗтел
хушшине лартӗ, вӗсене хӑналӗ. 38 Тен, ҫав чурасен
ҫур ҫӗрччен е тул ҫутӑличченех хуҫине кӗтмелле
пулӗ. Хуҫи пырӗ те вӗсем ҫывӑрманнине курӗ. Сыхӑ
тӑракан чурасем тата телейлӗрех. 39 Ҫакна астӑвӑр:
вӑрӑ хӑш вӑхӑтра килессе пӗлсен кил хуҫи сыхӑ
тӑрӗччӗ, ӑна хӑйӗн ҫуртне ҫӗмӗрсе кӗме памӗччӗ.
40 Ҫавӑнпа эсир те хатӗр тӑрӑр, мӗншӗн тесен Этем
Ывӑлӗ кӗтмен-туман вӑхӑтра килӗ».

### Шанчӑклӑ тата шанчӑксӑр чурасем ҫинчен

41 Вара Петр ыйтнӑ: «Хуҫамӑр, ҫак ытарлӑха Эсӗ
пирӗн валли калатӑн-и е вӑл пурин валли те?»
42 Иисус вара ҫапла каланӑ: «Кам шанчӑклӑ, ӑслӑ
кил пӑхакан? Калӑпӑр, хуҫи хӑйӗн ытти тарҫисене
пӑхса тӑма, вӑхӑтра ҫӑкӑр валеҫме пӗр чурине
уйӑрса лартнӑ. 43 Хуҫи тавӑрӑннӑ чухне хушнине
туса тӑракан чура телейлӗ пулӗ. 44 Чӑн калатӑп
сире: хуҫа ӑна хӑйӗн пӗтӗм пурлӑхне пӑхса
тӑраканӗ тӑвӗ. 45 Калӑпӑр, ҫав чура хӑй ӑшӗнче:
„Хуҫам халех килмӗ-ха“, – тесе, арҫын тарҫисене те,
хӗрарӑм тарҫисене те хӗнеме пуҫлӗ, ӗҫсе-ҫисе
ӳсӗрӗлсе ҫӳрӗ. 46 Хайхи чура хуҫи кӗтмен-туман
вӑхӑтра килӗ те, ӑна асаплантарса вӗлерсе, унӑн
шӑпине ӗненмен ҫынсеннипе пӗрешкелех татса
парӗ. 47 Ӗнтӗ хуҫи ирӗкне пӗлнӗ ҫинчех хатӗр
тӑман, унӑн ирӗкне туман чурана нумай хӗнӗҫ.
48 Пӗлмесӗр айӑпа кӗнӗ чурана вара сахалтарах
хӗнӗҫ. Кама нумай панӑ, унран нумайрах ыйтӗҫ.
Кама нумай шанса панӑ, унран тата ытларах
шыраса илӗҫ».

*Вут тата уйӑру*
(Мф. 10:34-36)

49 «Эпӗ ҫӗр ҫине вут антармашкӑн килтӗм, ӑна
ӗнтӗ халех тивертсе ярасшӑн! 50 Манӑн синкерлӗ
шыва кӗмелле, вӑл пурнӑҫланасса кӗтсе Эпӗ питӗ
тертленетӗп. 51 Эпӗ ҫӗр ҫине канӑҫлӑх кӳме килнӗ
тесе шухӑшлатӑр-и эсир? Ҫук, – тетӗп сире, – Эпӗ
уйӑрма килнӗ. 52 Паянтан ӗнтӗ, пӗр килте пилӗк ҫын
пулсан, вӗсем икӗ пая уйӑрӑлӗҫ: виҫҫӗшӗ – иккӗшне
хирӗҫ, иккӗшӗ виҫҫӗшне хирӗҫ тӑрӗҫ. 53 Ашшӗ –
ывӑлне хирӗҫ, ывӑлӗ ашшӗне хирӗҫ тӑрӗ. Амӑшӗ –
хӗрне хирӗҫ, хӗрӗ амӑшне хирӗҫ тӑрӗ. Хунямӑшӗ –
кинне хирӗҫ, кинӗ хунямӑшне хирӗҫ тӑрӗ».

*Вăхăт паллине пĕлни*
(Мф. 16:2-3)
54 Унтан Иисус халăха çапла каланă: «Хĕвел анăç
енчен пĕлĕт хăпарнине курсан эсир: „Çумăр
çăвасса“, – тетĕр. Чăнах та çăвать. 55 Кăнтăр енчен
çил вĕрсен: „Шăрăх пуласса“, – тетĕр. Чăнах та
пулать. 56 Эй, икĕ питлĕскерсем! Эсир çĕрпе пĕлĕте
сăнаса çанталăка чухлама пĕлетĕр. Халĕ мĕнле
вăхăт çитнине мĕншĕн пĕлейместĕр?
57 Мĕн тусан тĕрĕс, мĕн тусан тĕрĕс мар пулнине
мĕншĕн-ха эсир хăвăр тĕллĕн татса параймастăр?
58 Хăвăнпа судлашас текенпе пуçлăх патне кайнă
чухне çул çинчех çураçма тăрăш. Ахальлĕн вăл сана
судья патне илсе пырĕ, судья вара сана тĕрмене
хуптарма хуралçă аллине парĕ. 59 Калатăп сана:
юлашки пусна парса хăвармасăр та унтан
тухаймăн».

### Ӳкĕнмешкĕн чĕнни

13 Çав вăхăтра пĕрисем пынă та Иисуса çапла
каласа кăтартнă: «Галилея çыннисене Пилат
Турă Çуртĕнче вĕлерттернĕ. Вара вĕсен юнне
хăйсем Турра кӳнĕ выльăх-чĕрлĕх юнĕпе
хутăштарнă». 2 Иисус çакна хирĕç каланă: «Вĕсем
çапла вилнĕшĕн Галилейăри ытти çынсенчен те
çылăхлăрах пулнă пулĕ тесе шутлатăр-и эсир? 3 Çук,
çылăхлăрах пулман. Калатăп сире: ӳкĕнмесен эсир
те вĕсем пекех пурте пĕтетĕр. 4 Е тата Силоам
башни ишĕлнипе вун сакăр çын вилни çинчен мĕн
калама пулать? Вĕсем Иерусалимри ытти
çынсенчен айăплăрах пулнă пулĕ тесе шутлатăр-и
эсир? 5 Çук, айăплăрах пулман. Калатăп сире:
ӳкĕнмесен эсир те вĕсем пекех пурте пĕтетĕр».

### Çимĕç кӳмен смоква çинчен каланă ытарлăх

6 Унтан Иисус вĕсене çак ытарлăха каласа панă:
«Пĕр çын иçĕм çырли пахчине смоква йывăççи
лартнă пулнă. Пĕррехинче вăл ун çимĕçне пăхма
пынă, анчах тупайман. 7 Вара пахчаçине каланă:
„Виççĕмĕш çул эпĕ çак йывăçăн çимĕçне пăхма
килетĕп. Çапах ун çинче пĕр çырла та курмастăп.
Касса пăрах ăна, мĕн вăл усăсăр çĕр йышăнса
ларать?“ 8 Лешĕ хирĕç каланă: „Эй, Хуçам! Ăна тепĕр
çула хăвар ĕнтĕ. Эпĕ ун тавра çĕрне кăпкалатса,
тислĕк хурса пăхам, çимĕçĕ пулмĕ-и? Пулмасан
вара килес çул касса пăрахтар ăна“».

### Иисус пĕр хĕрарăма шăмат кун сыватни

10 Иисус пĕр синагогăра шăмат кун вĕрентнĕ.
11 Унта халсăр тăвакан сывлăш хутлатса лартнă
хĕрарăм пулнă. Вăл вун сакăр çул тӳрленме
пултарайман. 12 Иисус ăна курсан чĕнсе илнĕ те
каланă: «Хĕрарăм, эсĕ чирӳнтен тасалтăн!» 13 Вара
ун çине аллине хунă та, лешĕ çавăнтах тӳрленсе
тăрса Турра мухтама пуçланă. 14 Çавăн чух синагога
пуçлăхĕ, Иисус çав хĕрарăма шăмат кун
сыватнăшăн çилленсе, халăха каланă: «Эрнере ултă
кун пур, пĕтĕм ĕçе çав кунсенче тумалла. Чиртен
сывалма эсир шăмат кун мар, ытти кунсенче
килĕр!» – тенĕ. 15 Хуçамăр ăна çапла хуравланă: «Эй,
икĕ питлĕскер! Сирĕнтен кашниех витере
кăкарăнса тăракан вăкăрне е ашакне çыххине
салтса шăмат кун шăварма илсе каймасть-им вара?
16 Авраам йăхĕнчи çак хĕре шуйттан вун сакăр çул
çыхса усранă. Вăл ĕнтĕ çав çыхăран шăмат кун
ирĕке тухма тивĕçлĕ марччĕ-и?»
17 Иисус çапла каланă чухне Ăна хирĕçлекенсем
пурте намăсланнă, ытти халăх Иисус тунă мĕн пур
мухтавлă ĕççемшĕн савăнса тăнă.

*Сарă пăрăç вăррипе кăвас тĕпĕ çинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 13:31-33; Мк. 4:30-32)
18 Иисус çапла каланă: «Турă Патшалăхĕ мĕн
евĕрлĕ? Ăна мĕнпе танлаштарам-ши? 19 Вăл сарă
пăрăç вăрри евĕрлĕ; пĕр çын ăна хăйĕн пахчине
акнă. Вара çав вăрăран пысăк йывăç ӳснĕ, унăн
турачĕсем хушшинче вĕçен кайăксем те йăва
çавăрнă».
20 Иисус татах каланă: «Турă Патшалăхне мĕнпе
танлаштарма пулать? 21 Вăл кăвас тĕпĕ евĕрлĕ.
Хĕрарăм кăвас тĕпне илнĕ те виçĕ витре çăнăхпа
хутăштарса çăрнă, вара пĕтĕм чусти йӳçсе
хăпарнă».

*Тăвăр хапха*
(Мф. 7:13-14, 21-23)
22 Иисус çынсене вĕрентсе ял-хула витĕр тухнă.
Унăн çулĕ Иерусалималла выртнă. 23 Пĕр çын Унран
ыйтнă: «Хуçамăр, çăлăнакансем чăнах сахал пулĕç-
и?» Иисус çапла хуравланă: 24 «Тăвăр хапхапа кĕме
пĕтĕм вăйран тăрăшăр. Калатăп сире: нумайăшĕ
кĕме тăрăшĕç, анчах кĕреймĕç. 25 Кил хуçи тăрса
алăкне хупсан, эсир тул енче алăка шаккаса:
„Хуçамăр! Хуçамăр! Уçса кĕртсем пире“, – тесе
йăлăнма пуçлăр. Анчах Вăл сире: „Камсем тата
ăçтан эсир? Эпĕ сире пĕлместĕп“, – тейĕ. 26 Эсир
вара: „Эпир Санăн куçу умĕнчех ĕççе çиеттĕмĕр!
Эсĕ пирĕн хула урамĕсенче вĕрентсе çӳреттĕн!“ –
тейĕр. 27 Анчах та Вăл калĕ: „Эй, усал ĕç тăвакансем
пурте! Калатăп сире: эсир камне тата ăçтан
килнине пĕлместĕп, кайăр Ман патăмран“. 28 Эсир
Авраам, Исаак, Иаков тата пур пророксем те Турă
Патшалăхĕнче пулнине, хăвăра вара тулашне
хăваласа кăларнине курăр. Унта шăл
шатăртаттарса йĕни илтĕнсе тăрĕ. 29 Çынсем хĕвел
тухăçĕнчен те, хĕвел анăçĕнчен те, кăнтăрпа çурçĕр
енчен те пырса Турă Патшалăхĕн кĕрекине ларĕç.
30 Ун чухне кайрисем малта пулĕç, малтисем кайра
пулĕç».

*Иисус Иерусалимшăн йĕни*
(Мф. 23:37-39)
31 Çав кун Иисус патне хăш-пĕр фарисейсем пынă
та: «Эсĕ урăх çĕре тухса кай, мĕншĕн тесен Ирод
Сана вĕлересшĕн», – тенĕ. 32 Иисус вара вĕсене:
«Кайса çав тилле калăр: „Эпĕ паянпа ыран усалсене
хăваласа кăларатăп, чирлисене сывататăп,
виçмине Хамăн ĕçе вĕçлĕп“, – тенĕ. 33 – Анчах епле

пулсан та паян, ыран тата виҫмине Манăн Хамăн
ҫулпа утмалла, мĕншĕн тесен пророка
Иерусалимра мар, урăх ҫĕрте вĕлерни пулман-ха.
34 Эх, Иерусалим! Иерусалим! Пророксене
пĕтерекен, ху патна янисене чулпа пере-пере
вĕлерекен хула! Кайăк хăй чĕпписене ҫуначĕ айне
пухнă пек, Эпĕ миҫе хутчен санăн ачусене пуҫтарма
тытăнтăм, анчах та эсир пуҫтарăнасшăн пулмарăр!
35 Ĕнтĕ сирĕн ҫуртăр пушанса юлать. Калатăп сире:
„Хуҫа Турă ячĕпе Килекен мухтавлă!“ – теес вăхăт
ҫитиччен эсир Мана урăх кураймăр».

### Шыв чирĕллĕ ҫынна сыватни

14 Пĕр шăмат кун Иисус фарисейсен пуҫлăхĕ
патне хăнана кĕнĕ. Унти фарисейсем Ăна
хытă сăнаса ларнă. 2 Ҫавăн чух Ун умне шыв
чирĕпе асапланакан ҫын пырса тăнă. 3 Иисус саккун
вĕрентӳҫисемпе фарисейсенчен: «Саккун тăрăх
шăмат кун ҫынна чиртен сыватма юрать-и?» – тесе
ыйтнă. 4 Лешсем чĕнмен. Иисус ҫав ҫынна сĕртĕнсе
сыватнă та килне янă. 5 Унтан вĕсене: «Сирĕнтен
камăн та пулин ашакĕ е вăкăрĕ ҫăла кайсан, ăна
вăл, шăмат кун пулсан та, хăвăртрах туртса
кăлармĕ-и?» – тенĕ. 6 Ҫакна хирĕҫ лешсем Ăна
нимĕн те калайман.

### Сапăрлăх ҫинчен

7 Чĕннĕ хăнисем сĕтел хушшинчи лайăхрах
вырăна ларма тăрăшнине курсан Иисус ҫапла
ытарлăх каласа кăтартнă: 8 «Сана туя чĕнсен эсĕ
кĕрекене кĕрсе ан лар. Тен, унта санран хисеплĕрех
хăна пулĕ. 9 Вара иксĕре те туя чĕннĕ хуҫи сан
патна пырĕ те: „Эсĕ куҫса ху вырăнна ҫак ҫынна
ларт-ха“, – тейĕ. Ун чух санăн намăсланса алăк
патĕнчи вырăна кайса лармалла пулĕ. 10 Хăнана
чĕнсен эсĕ алăк патнерех лар. Вара сана чĕнекен
хуҫи пырса: „Тусăм! Эсĕ тĕпелерех иртсе ларсам“, –
тейĕ. Ун чух сана ытти хăнасем умĕнче епле хисеп
пулĕ! 11 Астăвăр, хăйне хăй асла хуракан кĕҫĕне
юлĕ; хăйне кĕҫĕне хураканни асла тухĕ».
12 Хăйне хăнана чĕннĕ фарисее Иисус ҫапла
каланă: «Эсĕ кăнтăрлахи е каҫхи апат тунă чух
тусусене, хурăнташусене, тăванусене тата пуян
кӳршӳсене ан чĕн, мĕншĕн тесен кайран вĕсем те
сана хăнана чĕнсе тав тума пултараҫҫĕ. 13 Пысăк
ĕҫкĕ-ҫикĕ тума шутласан эсĕ кĕлмĕҫсене, уксах-
чăлахсене, суккăрсене чĕн. 14 Вĕсем сана тавăрса
парайманшăн эсĕ телейлĕ пулăн. Уншăн сана
сăваплă ҫынсем чĕрĕлсе тăнă чухне тавăрса
парĕҫ».

*Пысăк ĕҫкĕ-ҫикĕ ҫинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 22:1-10)

15 Ҫавна илтсен Унпа пĕрле сĕтел хушшинче
ларакансенчен пĕри: «Турă Патшалăхĕнче ҫăкăр
ҫиес ҫын телейлĕ!» – тенĕ Ăна.
16 Иисус вара ăна ҫапла каланă: «Пĕр ҫын пысăк
ĕҫкĕ-ҫикĕ хатĕрленĕ те йышлă хăна чĕннĕ. 17 Ĕҫсе
ҫиме вăхăт ҫитсен вăл чĕнсе хунисем патне хăйĕн
чурине: „Ĕнтĕ апат-ҫимĕҫ пĕтĕмпех хатĕр, пырăр“, –
тесе калама янă. 18 Анчах чĕнсе хунисем, пĕр-
пĕринпе калаҫса татăлнă пекех, тĕрлĕрен сăлтав
тупса каҫару ыйтнă. „Эпĕ ҫĕр илтĕм, ҫавна пăхма
манăн халех каймалла. Тархасшăн, каҫар мана“, –
тенĕ ăна пĕри. 19 „Эпĕ пилĕк мăшăр вăкăр туянтăм,
вĕсене ҫӳретсе пăхма каятăп. Тархасшăн, каҫар
мана“, – тенĕ тепри. 20 Виҫҫĕмĕшĕ тата: „Эпĕ нумай
пулмасть авлантăм, ҫавăнпа пыраймастăп“, – тенĕ.
21 Вара чури тавăрăннă та ҫавăн ҫинчен хуҫине
каласа панă. Кил хуҫи ҫилленсе ҫитсе хăйĕн чурине
ҫапла хушса янă: „Часрах кай та хула урамĕсемпе
тăкăрлăкĕсенчи кĕлмĕҫсене, чăлахсене, уксахсене,
суккăрсене кунта чĕнсе кил“. 22 Чĕннисем
пуҫтарăнсан, чури каланă: „Хуҫам! Пĕтĕмпех эсĕ
хушнă пек турăм, сĕтел хушшинче татах вырăн пур-
ха“, – тенĕ. 23 „Эсĕ эппин хула ҫумĕнчи тĕттĕм, пушă
ҫул-йĕрсем тăрăх кай та тĕл пулакансене хистесех
кунта чĕн, килĕм тулли хăна пултăр, – тенĕ хуҫи
чурине. 24 – Калатăп сире: чĕнсе хунисенчен пĕри
те манăн ĕҫкĕ-ҫикĕре лараймĕҫ, мĕншĕн тесен
чĕнсе хунисем нумай та, суйласа илнисем сахал “».

*Иисусăн вĕренекенĕ пулма кам пултарать?*
(Мф. 10:37-38)

25 Иисус хыҫҫăн питĕ нумай халăх пынă. Вăл
ҫавăрăнса пăхнă та вĕсене каланă: 26 «Кам хăйĕн
ашшĕ-амăшне, арăмне, ачисене, пĕртăванĕсене е
хăйĕн пĕртен-пĕр пурăнăҫне Манран мала хурать,
вăл Ман вĕренекенĕм пулма пултараймĕ. 27 Кам
хăйĕн асап хĕресне йăтса Ман хыҫҫăн пымасть, ҫав
Манăн вĕренекенĕм пулаймĕ. 28 Сиртен кам та
пулин ҫурт лартма шутлать пулсан, вăл малтан
ҫурчĕ мĕн хака ӳкессе тата ăна туса пĕтерме укҫи
ҫитессе шутласа пăхмĕ-и? 29 Унсăрăн вăл никĕсне
хурĕ те ҫуртне туса пĕтереймĕ. Вара пурте унран
кулма пуҫлĕҫ: 30 „Ку ҫын ҫурт лартма тытăнчĕ те туса
пĕтереймерĕ“, – тейĕҫ. 31 Е тата пĕр патша тепĕр
патшана хирĕҫ вăрҫăпа тухма шутлать пултăр. Вăл
вара хăйĕн вунă пин ҫынлă ҫарĕпе леш ҫирĕм
пинлĕ патша ҫарне ҫĕнтерме вăйĕ ҫитессе е
ҫитмессе малтан шухăшласа пăхмĕ-и? 32 Вăйне
ҫитерейместе туйса илсен, леш патши аякра чухне,
ун патне вăл килĕшӳ тума элчисене ярĕ. 33 Ҫавăн
пекех эсир те, хăвăрăн мĕн пуррине
пăрахăҫламасан, Ман вĕренекенĕмсем пулаймăр».
34 «Тăвар – ырă япала, анчах вăл хăватне ҫухатсан
унăн тутине епле тавăрмалла? 35 Вăл ĕнтĕ ана ҫине
тăкма та, тислĕк купи ҫине хума та юрăхсăр, ăна
кăларса тăкмалла кăна. Илтме хăлха пурри илттĕр!»

*Ҫухалнă сурăх ҫинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 18:12-14)

15 Пĕррехинче Иисуса итлеме налук
пухакансем те, ҫылăхлă ҫынсем те нумаййăн
пынă. 2 Унта тăракан фарисейсемпе саккун
вĕрентӳҫисем ӳпкелешсе калаҫнă: «Вăл ҫылăхлă
ҫынсене йышăнать, вĕсемпе пĕрле апат ҫиет!» –
тенĕ.

3 Вӑл вара вӗсене ҫак ытарлӑха каласа кӑтартнӑ:
4 «Сирӗн хӑшӗн те пулин ҫӗр пуҫ сурӑх пултӑр. Вӑл,
пӗр сурӑхне ҫухатсан, тӑхӑр вун тӑххӑрӑшне хире
хӑварса, ҫухалнӑ сурӑхне мӗн тупичченех шыраса
ҫӳремӗ-и? 5 Сурӑхне тупсан вӑл, савӑнса, ӑна хӑйӗн
хулпуҫҫийӗ ҫине ҫӗклесе хурӗ. 6 Вара килне илсе
пырсан хӑйӗн тусӗсене, кӳршисене чӗнсе пуҫтарӗ
те вӗсене калӗ: „Манпа пӗрле савӑнӑр, эпӗ ҫухалнӑ
сурӑха тупрӑм!“ – тейӗ. 7 Калатӑп сире: ҫавнашкалах
тӳпере те, ҫылӑхлӑ пӗр ҫын ӳкӗнсен, уншӑн ӳкӗнме
те кирлӗ мар тӑхӑр вун тӑхӑр тӳрӗ ҫыншӑн
савӑннинчен ытларах савӑнӗҫ».

### Ҫухалнӑ кӗмӗл укҫа ҫинчен каланӑ ытарлӑх

8 «Е пӗр-пӗр хӗрарӑм хӑйӗн вунӑ драхма укҫинчен
пӗрне ҫухаттӑр. Вӑл вара ҫутаткӑҫ ҫутса, урайне
шӑпӑрпа шӑлса укҫине тупичченех тӑрӑшса
шырамӗ-и? 9 Укҫине тупсан вӑл тус-тантӑшӗсене,
кӳршӗ хӗрарӑмӗсене чӗнсе пуҫтарӗ те вӗсене:
„Манпа пӗрле савӑнӑр, эпӗ ҫухалнӑ укҫана тупрӑм!“
– тейӗ. 10 Калатӑп сире: ҫылӑхлӑ пӗр ҫын ӳкӗннишӗн
те Туррӑн ангелӗсем ҫавӑн пекех савӑнаҫҫӗ».

### Аташнӑ ывӑл ҫинчен каланӑ ытарлӑх

11 Иисус татах каланӑ: «Пӗр ҫыннӑн икӗ ывӑл
пулнӑ. 12 Кӗҫӗнни ашшӗ патне пынӑ та: „Атте, хама
тивӗҫлӗ пурлӑха мана уйӑрса пар!“ – тенӗ. Ашшӗ
вара ывӑлӗсене пурлӑх уйӑрса панӑ. 13 Часах кӗҫӗн
ывӑлӗ хӑйӗнне пӗтӗмпех пуҫтарнӑ та инҫетри ҫӗр-
шыва тухса кайнӑ. Унта путсӗр пурӑнса вӑл хӑйӗн
пурлӑхне салатса пӗтернӗ. 14 Пурлӑхӗ пӗтнӗ
хыҫҫӑнах ҫав ҫӗр-шывра йывӑр выҫлӑх пуҫланнӑ,
вӑл вара аптӑраса ҫитнӗ. 15 Унтан пӗр ҫын патне
тарҫа кӗнӗ. Лешӗ ӑна хӑйӗн сыснисене пӑхма хире
янӑ. 16 Ҫимелли нимӗн те паманран вӑл сысна
апачӗпе тӑранса пурӑнма та хатӗр пулнӑ.
17 Юлашкинчен вӑл шухӑшласа илнӗ те: „Аттем
килӗнче мӗн чухлӗ тарҫӑ тӑраничченех ҫӑкӑр ҫиет,
эпӗ кунта выҫӑ вилетӗп! – тенӗ. 18 – Ӗнтӗ атте патне
тавӑрӑнам та ӑна калам: Эй, атте! Эпӗ Турӑ умӗнче
те, сан умӑнта та ҫылӑха кӗтӗм, 19 ывӑлу ятне илтме
те тивӗҫсӗр! Ҫапах мана ху патна тарҫа илсем, –
теем“. 20 Унтан вӑл ашшӗ патне кайнӑ. Ашшӗ ӑна
аякран курсанах хӗрхеннӗ, хирӗҫ чупса пынӑ та
ыталаса чуптунӑ. 21 „Эй, атте! – тенӗ ӑна ывӑлӗ. –
Эпӗ Турӑ умӗнче те, сан умӑнта та ҫылӑха кӗтӗм,
ывӑлу ятне илтме те тивӗҫсӗр!“ 22 Ашшӗ хӑйӗн
чурисене ҫапла каланӑ: „Чи лайӑх тумтир илсе
килсе тумлантарӑр ӑна. Пӳрнине куҫлӑ ҫӗрӗ
тӑхӑнтартӑр, урине тӑхӑнма пушмак парӑр.
23 Самӑртнӑ пӑрӑва ҫавӑтса килсе пусӑр, ӗҫсе ҫиер,
савӑнар! 24 Ку ывӑлӑм манӑн вилнӗччӗ, халӗ акӑ
чӗрӗлчӗ! Ҫухалнӑччӗ, акӑ тупӑнчӗ!“ Унтан вӗсем
ӗҫсе-ҫисе савӑнма пуҫланӑ.
25 Ҫав вӑхӑтра аслӑ ывӑлӗ хирте пулнӑ. Тавӑрӑннӑ
чухне вӑл килӗнче савӑнса юрланине илтнӗ. 26 Вара
пӗр тарҫине чӗнсе илнӗ те: „Кунта мӗн тӑваҫҫӗ?“ –
тесе ыйтнӑ. 27 Тарҫи ӑна каланӑ: „Сан шӑллу
тавӑрӑнчӗ, вӑл сывӑ тавӑрӑннӑшӑн савӑннипе аҫу
самӑртнӑ пӑрӑва пустарчӗ“. 28 Аслӑ ывӑлӗ питӗ
ҫилленнӗ, килне те кӗресшӗн пулман. Ашшӗ ӑна
хӑй тухса чӗннӗ. 29 Анчах вӑл ашшӗне хирӗҫ каланӑ:
„Миҫе ҫул эпӗ саншӑн тарҫӑ пек ӗҫлесе пурӑнтӑм,
эсӗ мӗн хушнине яланах туса тӑтӑм. Анчах
юлташсемпе савӑнма эсӗ мана пӗр качака путекки
те пустарса памарӑн! 30 Аскӑн арӑмсемпе ҫӳресе
пурлӑхне салатнӑ ывӑлу килнӗ те, эсӗ уншӑн
самӑртнӑ пӑрӑва пустарнӑ“. 31 „Эй, ывӑлӑм! – тенӗ
ашшӗ ӑна. – Эсӗ яланах манпа пӗрле. Манӑн мӗн
пурри пӗтӗмпех санӑн. 32 Шӑллу тавӑрӑннӑшӑн
хӗпӗртемелле, мӗншӗн тесен вӑл вилнӗччӗ, халӗ
чӗрӗлчӗ; ҫухалнӑччӗ, халӗ тупӑнчӗ!“»

### Кил-ҫурт пӑхакан ултавҫӑ ҫинчен каланӑ ытарлӑх

16 Унтан Хӑйӗн вӗренекенӗсене Иисус ҫапла
каланӑ: «Пӗр пуян ҫыннӑн кил-ҫурт пӑхса
тӑраканни пулнӑ. Вӑл хуҫин пурлӑхне салатса
пӗтерни ҫинчен хайхи пуяна хыпар ҫитернӗ. 2 Вара
хуҫи ӑна чӗнтернӗ те: „Сан ҫинчен ырӑ мар хыпар
илтрӗм. Ман пурлӑха епле упрани ҫинчен явап пар,
текех ӗнтӗ эсӗ кил-ҫурт пӑхса тӑмӑн“, – тенӗ. 3 Кил-
ҫурт пӑхакан хӑй ӑшӗнче шухӑшланӑ: „Мӗн тӑвас-
ши ӗнтӗ манӑн? Хуҫам мана ӗҫрен кӑларса ярать.
Ҫӗр чавма эпӗ пултараймастӑп, ыйткаласа ҫӳреме
вӑтанатӑп. 4 Ӗнтӗ кунтан кӑларса ярсан мана кам та
пулин хӑй патне илтӗр тесен, мӗн тумаллине тинех
ӑнкарса илтӗм“. 5 Вӑл вара хуҫине парӑма кӗнӗ
ҫынсене пӗрерӗн-пӗрерӗн чӗнсе илнӗ. „Ман
хуҫаран эсӗ мӗн чухлӗ кивҫен илнӗ?“ – ыйтнӑ вӑл
малтанхи ҫыннинчен. 6 „Ҫӗр кӑкшӑм олив ҫӑвӗ“, –
тенӗ лешӗ. Кил-ҫурт пӑхакан ӑна каланӑ:
„Хӑвӑртрах лар та парӑм хучӗ ҫине аллӑ тесе ҫыр“.
7 „Эсӗ тата мӗнпе парӑма кӗнӗ?“– ыйтнӑ унтан
тепринчен. „Ҫӗр михӗ тулӑ“, – тенӗ хайхискер. Вӑл
ӑна та: „Парӑм хутне ил те сакӑр вуннӑ тесе ҫырса
хур“, – тенӗ. 8 Ҫапла тавҫӑруллӑ пулнӑшӑн хуҫи вара
хӑйӗн кил-ҫуртне пӑхакан ултавҫӑна мухтанӑ.
Чӑнах та, ку тӗнче ҫыннисем хӑйсем хушшинче
ҫутӑ ачисенчен тавҫӑруллӑрах. 9 Эпӗ те сире
калатӑп: ку тӗнчери таса мар мулӑрпа усӑ курса та
хӑвӑр валли тус-тӑвансем тупӑр. Кайран, хӑвӑр ҫука
юлсан, сире ӗмӗр пурӑнмалли ҫурта илӗҫ.
10 Сахалра шанчӑклӑ ҫын нумайӑшӗнче те
шанчӑклӑ; сахалра ултавли нумайӑшӗнче те ултавлӑ.
11 Ҫавӑнпа ӗнтӗ, сире ку тӗнчери ултавлӑ мула та
шанса пама ҫук пулсан, тӳпери чӑн-чӑннине кам
шанса парӗ? 12 Ют ҫын пурлӑхне шанса пама ҫук
пулсан, апла хӑвӑрӑнне сире кам шанса парӗ?
13 Нимӗнле тарҫӑ та харӑсах икӗ хуҫана юраймасть,
мӗншӗн тесен вӑл пӗр хуҫине кураймӗ, теприне
юратӗ; е пӗриншӗн чунне парса тӑрӑшӗ,
теприншӗн тӑрӑшмӗ. Эсир харӑсах Турӑ чури те,
мул чури те пулаймӑр».

*Саккун тата Турă Патшалăхĕ*
(Мф. 11:12-13)

14 Укҫа юратакан фарисейсем те ҫак сăмахсене
илтнĕ. Вара вĕсем Иисусран тăрăхласа кулма
пуҫланă. 15 Иисус вĕсене ҫапла каланă: «Эсир
ҫынсем умĕнче хăвăра тӳрĕ пек кăтартатăр, анчах
сирĕн чĕрĕре Турă пĕлет. Мĕншĕн тесен ҫынсем
хушшинче чаплă пекки Турă умĕнче ирсĕр.
16 Иоанн киличчен саккунпа пророксем кăна пулнă.
Ҫав вăхăтран пуҫласа Турă Патшалăхĕн Ырă
Хыпарне пĕлтереҫҫĕ, тăрăшсассăн кашниех унта
кĕреет. 17 Ҫапах та саккунри пĕр сас палли те
ҫухалмасть. Вăл пĕтиччен ҫĕрпе пĕлĕт пĕтĕ.
18 Кирек кам та, арăмĕнчен уйăрăлса урăххине
качча илсен, мăшăрне улталать. Уйăрăлнă
хĕрарăма качча илни те мăшăра улталаниех
пулать».

## Пуянпа Лазарь

19 Иисус татах каланă: «Пĕр ҫын питĕ пуян пулнă.
Вăл чи хаклă йышши тумтирпе ҫӳренĕ, куллен
чаплă ĕҫкĕ-ҫикĕ тунă. 20 Ҫав пуянăн хапхи умĕнче
кĕсенленсе кайнă Лазарь ятлă кĕлмĕҫ выртнă.
21 Вăл пуян сĕтелĕ ҫинчен ӳкекен тĕпренчĕксемпе
тăранса пурăнасшăн пулнă. Унăн суранĕсене
йытăсем пыра-пыра ҫулланă. 22 Кĕлмĕҫ вилнĕ те,
ангелсем ăна Авраам патне пĕлĕт ҫине илсе кайнă.
Пуян ҫын та вилнĕ, ăна пытарнă. 23 Вăл тамăкра
асапланнă чух ҫӳлелле пăхнă та инҫетре Авраама
тата унпа юнашар тăракан Лазаре курнă. 24 „Эй,
Авраам мăн асатте, хĕрхен мана! – тесе кăшкăрнă
пуян. – Лазаре ярсам, типнĕ ҫăварăма тумлам
шывпа йĕпеттĕрччĕ! Эпĕ ҫак ҫулăм ăшĕнче питĕ
асапланатăп-ҫке!“ 25 Анчах та Авраам ҫапла каланă:
„Ачам! Астуса ил-ха, ҫĕр ҫинчи пурăнăҫунта эсĕ
ырлăх куртăн, Лазарь вара нуша курса пурăнчĕ.
Халĕ вăл кунта савăнать, эсĕ вара асапланатăн.
26 Унтан та ытларах, ку енчен леш енне каҫма та,
леш енчен ку енне каҫма та май ҫук, мĕншĕн тесен
сирĕнпе пирĕн хушшăмăрта тĕпсĕр шырлан“.
27 Вара пуян йăлăнса ыйтнă: „Эй, мăн асаттем,
тархаслатăп сана, Лазаре эсĕ атте килне ярсамччĕ.
28 Унта манăн татах пилĕк шăллăм пур-ҫке! Вăл
вĕсене каласа пĕлтертĕр, вĕсен те ҫак
асапланмалли вырăна килмелле ан пултăрччĕ!“
29 Авраам ăна каланă: „Вĕсен Моисей тата
пророксем пур. Вĕсем ҫавсене итлеччĕр“. 30 „Ҫук,
Авраам мăн асатте, – хирĕҫленĕ пуян, –
вилнисенчен кам та пулин кайса каласан, вĕсем
ҫылăхĕсенчен ӳкĕнĕччĕҫ“. 31 Вара Авраам ăна ҫапла
каланă: „Вĕсем Моисея та, пророксене те
итлемесен, вилнисенчен кам та пулин чĕрĕлсе
тăрса каласан та ĕненмĕҫ“».

*Ҫылăха кĕресси, каҫарасси, ĕненесси ҫинчен*
(Мф. 18:6-7, 21-22; Мк. 9:42)

17 Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене ҫапла каланă:
«Этемĕн ҫылăха кĕресси пулатех, анчах
илĕртсе ҫылăха кĕртекене хуйхă пулĕ. 2 Ăна, мăйне
арман чулĕ ҫакса тинĕсе пăрахсан, ҫак
пĕчĕкскерсенчен пĕрне те пулин илĕртсе ҫылăха
кĕртнинчен лайăхрах пулĕччĕ. 3 Хăвăра хăвăр
астуса пурăнăр. Тăвану сан умăнта ҫылăха кĕрсен
эсĕ ăна йăнăшне кăтарт; ӳкĕнет пулсан каҫар. 4 Вăл
сан умăнта кунне ҫичĕ хут ҫылăха кĕрсен те, ҫичĕ
хут пырса: „Ӳкĕнетĕп“, – тесен, каҫар ăна».
5 Апостолсем вара Хуҫамăра: «Пирĕн ĕненĕве
вăйлатсам», – тенĕ. 6 Хуҫамăр вĕсене каланă: «Эсир
пĕр пĕрчĕк те пулин ĕненсессĕн те, ҫак смоква
йывăҫҫине: „Тымарупах кăкланса тинĕсе куҫса лар!“
– тесе каласан, вăл сире итленĕ пулĕччĕ».
7 «Калăпăр, санăн суха тăвакан е кĕтӳ кĕтекен чуру
пур. Вăл хиртен таврăнсан эсĕ ăна: „Кил, сĕтел
хушшине ларса апат ҫи“, – тесе калăн-и? 8 Ҫук, апла
каличчен хуҫи малтан: „Ĕҫ тумтирне улăштарса
тăхăн та ман валли каҫхи апат хатĕрле, эпĕ ĕҫсе
ҫием! Кайран ху ларса ҫи“, – тейĕ. 9 Хушнă ĕҫе
тунăшăн хуҫи чурине тав тăвĕ-и? Тав тăвĕ тесе
шухăшламастăп. 10 Эсир те ҫаплах, хăвăра мĕн
хушнине тусассăн: „Эпир ним тĕшне тăман
чурасем, мĕншĕн тесен хамăр тума тивĕҫлине кăна
турăмăр“, – тейĕр».

## Юхан-суранлă вунă ҫынна сыватни

11 Иисус Иерусалим хулине кайнă чух Галилейăпа
Самари хушшинчи ҫулпа иртсе пынă. 12 Пĕр яла
кĕрес умĕн Ăна юхан-суранлă вунă ҫын тĕл пулнă.
Вĕсем чарăнса аякранах хыттăн кăшкăрма пуҫланă:
«Эй, Вĕрентӳҫĕ Иисус! Хĕрхенсем пире!» 14 Иисус
вĕсене асăрхасан каланă: «Эсир кайăр та
священниксене курăнăр». Вара лешсем ҫулпа пынă
чухнех чиртен тасалнă. 15 Вĕсенчен пĕри хăй
сывалнине курсанах хытă сасăпа Турра мухтаса
каялла таврăннă. 16 Вара Иисуса тав туса, Ун умне
ӳксе пуҫҫапнă. Ҫакскер Самари ҫынни пулнă.
17 «Эсир вуннăн юхан-суранран тасалмарăр-и?
Тепĕр тăххăрăшĕ ăҫта? – тенĕ ҫавăн чухне Иисус.
18 – Ҫак урăх халăх ҫыннисĕр пуҫне ыттисем
мĕншĕн Турра мухтама таврăнмарĕҫ?» 19 Унтан
Иисус ăна: «Эсĕ тăрса каях, ĕненĕвӳ сана ҫăлчĕ», –
тенĕ.

*Турă Патшалăхĕ килесси*
(Мф. 24:23-28, 37-41)

20 Пĕррехинче фарисейсем Иисусран: «Турă
Патшалăхĕ хăҫан килет?» – тесе ыйтнă. Иисус
вĕсене хирĕҫ ҫапла каланă: «Турă Патшалăхĕ куҫа
курăнса килмест. 21 Турă Патшалăхĕ – сирĕн ăшăрта,
ҫавăнпа та: „Акă вăл кунта“ е: „Авă унта“, – тесе
калакан пулмĕ».
22 Кайран Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене каланă:
«Акă вăхăт ҫитĕ, эсир ун чух Этем Ывăлне пĕр
кунлăх та пулин курасшăн пулăр, анчах кураймăр.
23 „Акă Вăл кунта“ е: „Авă унта“, – тейĕҫ сире, анчах
эсир вĕсем хыҫҫăн ан кайăр. 24 Хăй килес кун Этем
Ывăлĕ пĕлĕте енчен енне ялтăртаттарса ҫутатакан
ҫиҫĕм пек пулăрса килĕ. 25 Анчах та унччен малтан

Унӑн нумай асап курмалла, ҫак ӑру ҫыннисем Ӑна
йышӑнмӗҫ.
26 Ной вӑхӑтӗнче мӗнле пулнӑ, Этем Ывӑлӗ килес
кун та ҫаплах пулӗ. 27 Ной карап ҫине ларас
кунчченех ҫынсем ӗҫсе ҫинӗ, авланнӑ, качча кайнӑ.
Кайран ҫӗр ҫине шыв илнӗ те пурне те пӗтернӗ.
28 Лот вӑхӑтӗнче те ҫавӑн пекех пулнӑ. Ҫынсем
ӗҫнӗ, ҫинӗ, сутнӑ, илнӗ, акнӑ, ҫуртсем лартнӑ.
29 Анчах Лот Содомран тухнӑ кунах вутлӑ кӳкӗрт
пӗлӗтрен ҫумӑр пек ҫунӑ та пӗтӗм халӑха пӗтернӗ.
30 Этем Ывӑлӗ ҫӗр ҫине килес кун та ҫавӑн пекех
пулӗ. 31 Ҫав кун кам та пулин кил хушшинче пулсан,
хӑйӗн япалисене илме пӳрте ан кӗтӗр. Хирте
пулсан, вӑл та каялла ан тавӑрӑнтӑр. 32 Лот арӑмне
аса илӗр! 33 Кам хӑйӗн пурӑнӑҫне упрасшӑн тӑрӑшӗ,
ҫав ӑна пӗтерӗ. Кам та кам пурӑнӑҫне пӗтерӗ, ҫав
ӑна ҫӑлса хӑварӗ. 34 Калатӑп сире: ҫав каҫ пӗр
вырӑн ҫинчи икӗ ҫынран пӗрне илӗҫ, теприне
хӑварӗҫ. 35 Икӗ хӗрарӑм пӗрле тырӑ авӑртӗҫ: пӗрне
илӗҫ, теприне хӑварӗҫ. 36 Иккӗн хирте пулӗҫ: пӗрне
илӗҫ, теприне хӑварӗҫ» .
37 Вӗренекенӗсем Иисусран ыйтнӑ: «Хуҫамӑр! Ку
вара ӑҫта пулӗ?» «Виле выртакан вырӑна ӑмӑрт
кайӑксем те пуҫтарӑнӗҫ», – тенӗ Иисус.

### Тӑлӑх арӑмпа тӳрӗ мар судья

18 Ялан Турра кӗлтумаллине тата хуйха ӳкме
юраманнине пӗлччӗр тесе Иисус вӗсене
ҫакӑн пек ытарлӑх каланӑ: 2 «Пӗр хулара судья
пурӑннӑ, вӑл Турӑран та хӑраман, ҫынсене те ним
вырӑнне хуман. 3 Ҫав хуларах тата тӑлӑх арӑм
пулнӑ. Вӑл ялан ҫав судья патне пырса: „Мана
хампа хирӗҫекен ҫынран хӳтӗлесемччӗ,“ – тесе
йӑлӑннӑ. 4 Судья нумайччен ун хутне кӗресшӗн
пулман. Юлашкинчен хӑй ӑшӗнче шутланӑ: „Эпӗ
Турӑран та хӑрамастӑп, ҫынсене те ним вырӑнне
хумастӑп! 5 Анчах ку тӑлӑх арӑм мана пӗртте канӑҫ
памасть. Ҫавӑнпа ун ыйтӑвне татса парам, урӑх
аптӑратса ан ҫӳретӗр“».
6 «Тӳрӗ мар судья мӗн каланине астӑвӑр, – тенӗ
унтан Хуҫамӑр. 7 – Кунӗн-ҫӗрӗн йӑлӑнса ыйтсан
Турӑ Хӑйӗн суйланӑ ҫыннисене, васкаман пек
туйӑнсан та, хӳтӗлесе хӑвармӗ-и? 8 Калатӑп сире:
Вӑл часах вӗсен хутне кӗрӗ. Анчах та Этем Ывӑлӗ
килсен ҫӗр ҫинче ӗненӳ тупайӗ-ши?»

### Фарисейпа налук пухакан ҫинчен каланӑ ытарлӑх

9 Ытти ҫынсенчен йӗрӗнсе, эпир кӑна тӳрӗ
пурӑнатпӑр тесе шутлакансене Иисус ҫакӑн пек
ытарлӑх каласа кӑтартнӑ: 10 «Икӗ ҫын Турӑ Ҫуртне
кӗлтума кӗнӗ: пӗри фарисей пулнӑ, тепри – налук
пухакан. 11 Фарисейӗ тӑнӑ та хӑй ӑшӗнче ҫапла
кӗлтунӑ: „Эй, Турӑҫӑм! Тавтапуҫ Сана, эпӗ ӗнтӗ
вӑрлакан, кӳрентерекен, мӑшӑрӗсене улталакан
ытти ҫынсем пек мар. Акӑ ҫак налук пухакан пек те
мар. 12 Эрнере икӗ хут типӗ тытатӑп, хам ӗҫлесе
илнинчен вуннӑмӗш пайне Турӑшӑн паратӑп“.
13 Налук пухаканӗ кӑна пуҫне ҫӗклеме те хӑяймасӑр
аякра тӑнӑ. Вӑл хуҫӑк кӑмӑлпа каланӑ: „Эй, Турӑҫӑм!
Хӗрхен мана, ҫылӑхлӑ ҫынна!“ 14 Чӑн калатӑп сире:
ҫак ҫын килне фарисейран ытларах тӳрре тухса
таврӑнӗ. Мӗншӗн тесен кам хӑйне асла хурать, ҫав
кӗҫӗне юлӗ; хӑйне кӗҫӗне хуракан асла тухӗ».

### *Иисус ачасене пиллет*

(Мф. 19:13-15; Мк. 10:13-16)

15 Иисус аллипе сӗртӗнтӗр тесе Ун патне ҫынсем
пӗчӗк ачисене те илсе пынӑ; ҫавна курсан
вӗренекенӗсем вӗсене Иисуса кансӗрлеме чарнӑ.
16 Анчах та Иисус, ачасене Хӑй патне чӗнсе илсе,
вӗренекенӗсене каланӑ: «Ачасене Ман патӑма
ярӑр, килме ан чарӑр, мӗншӗн тесен Турӑ
Патшалӑхӗ вӗсем пеккисемшӗн. 17 Чӑн калатӑп
сире: Турӑ Патшалӑхне кам ача пек йышӑнмасть,
ҫав унта кӗреймӗ».

### *Иисуспа пӗр пуян ҫамрӑк*

(Мф. 19:16-30; Мк. 10:17-31)

18 Пӗр пуҫлӑх Иисусран ыйтнӑ: «Эй, Ырӑ
Вӗрентекен! Ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пулас тесен манӑн
мӗн тумалла?» 19 Иисус ӑна ҫапла каланӑ: «Мӗншӗн
эсӗ Мана ырӑ тетӗн? Пӗр Турӑсӑр пуҫне никам та
ырӑ мар. 20 Пил-хушусене эсӗ пӗлетӗн: мӑшӑрна ан
ултала, ан вӗлер, ан вӑрла, судра суйса ан пӗлтер,
ашу-аннӳне хисепле». 21 «Эпӗ вӗсене пурне те мӗн
ачаранах пӑхӑнса пурӑнатӑп», – тенӗ лешӗ. 22 Ҫавна
илтсен Иисус ӑна каланӑ: «Санӑн ӗнтӗ пӗри
ҫитеймест. Хӑвӑн пӗтӗм пурлӑхна сут та укҫине
чухӑнсене валеҫсе пар, вара сан валли пурлӑх ҫӳл
тӳпере пулӗ. Ху кил те Ман хыҫҫӑн пыракан пул».
23 Капла каланине илтсен пуян ҫын салхуланнӑ,
мӗншӗн тесен унӑн пурлӑхӗ питӗ нумай пулнӑ.
24 Иисус вара, вӑл салхуланнине курса, ҫапла
каланӑ: «Пуянсене Турӑ Патшалӑхне кӗме епле
йывӑр! 25 Пуяна Турӑ Патшалӑхне кӗрессинчен
тӗвене йӗп ҫӑрти витӗр тухма ҫӑмӑлтарах». 26 Ҫакна
илтнӗ ҫынсем: «Эппин кам ҫӑлӑнма пултарӗ?» –
тесе ыйтнӑ. 27 Иисус каланӑ: «Этем
пултарайманнине Турӑ пултарать». 28 Петр Ӑна
каланӑ: «Акӑ эпир хамӑрӑн мӗн пуррине пӗтӗмпех
хӑвартӑмӑр та Сан хыҫҫӑн пыракансем пултӑмӑр».
29 Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Чӑн калатӑп сире:
кам та кам хӑйӗн кил-ҫуртне е ашшӗ-амӑшне, е
тӑванӗсене, е арӑмне, е ачисене Турӑ
Патшалӑхӗшӗн пӑрахать, 30 вӑл кунти пурӑнӑҫрах
чылай ытларах илӗ. Лери пурӑнӑҫра вара ӗмӗрлӗх
чӗрӗлӗхлӗ пулӗ».

### *Иисус Хӑй вилсе чӗрӗлесси ҫинчен виҫҫӗмӗш хут калани*

(Мф. 20:17-19; Мк. 10:32-34)

31 Иисус Вун иккӗшне аяккарах чӗнсе илнӗ те
каланӑ: «Акӑ эпир Иерусалималла ҫывхарса
пыратпӑр. Унта вара Этем Ывӑлӗ ҫинчен
пророксем ҫырса хуни пӗтӗмпех пурнӑҫланӗ. 32 Ӑна
урӑх халӑх ҫыннисен аллине тытса парӗҫ, лешсем
Унран мӑшкӑлласа кулӗҫ, Ӑна хур тӑвӗҫ, Ун ҫине
сурса пӗтерӗҫ, 33 чӗн пушӑпа хӗнӗҫ, унтан вӗлерӗҫ.
Виҫҫӗмӗш кунне вара Вӑл чӗрӗлсе тӑрӗ». 34 Анчах

вĕренекенĕсем çапла каланинчен нимĕн те
ăнланса илеймен, вĕсемшĕн çав сăмахсем
пытарăнчăк пулнă. Иисус мĕн каланине вĕсем
пĕлеймесĕрех юлнă.

*Суккăр çынна сыватни*

(Мф. 20:29-34; Мк. 10:46-52)

[35] Иисус Иерихон хули патне çывхарса пынă. Унта
пĕр суккăр çын çул хĕрринче ыйткаласа ларнă.
[36] Вăл юнашарах халăх иртнине илтнĕ те: «Унта мĕн
тăваççĕ?» – тесе ыйтнă. [37] Çынсем ăна: «Назорей
Иисусĕ иртсе пырать», – тенĕ. [38] Вăл вара: «Эй,
Давид йăхĕнчи Иисус! Хĕрхенсем мана!» – тесе
кăшкăрма пуçланă. [39] Малта пыракансем ăна
шăпланма хушнă. Анчах суккăр çын тата хытăрах:
«Давид йăхĕн Ывăлĕ! Хĕрхенсем мана!» – тесе
кăшкăрнă. [40] Иисус чарăннă та суккăра Хăй патне
çавăтса пыма хушнă. Хайхискер Ун патне пырсан
Иисус унран: [41] «Эсĕ Мана мĕншĕн чĕнетĕн?» – тесе
ыйтнă. «Эй, Хуçамăр! Манăн куракан пуласчĕ», –
хуравланă лешĕ. [42] Иисус ăна каланă: «Куракан пул!
Ĕненĕвӳ сана çăлчĕ». [43] Суккăр çав самантрах
куракан пулнă та, Турра мухтаса, Иисус хыççăн
кайнă. Çавна курсан пĕтĕм халăх Турра мухтама
пуçланă.

## Иисуспа Закхей

**19** Çавăн хыççăн Иисус Иерихон хулине кĕнĕ те
урампа утса пынă. [2] Çав хулара налук
пухакансен пуçлăхĕ, Закхей ятлă пĕр пуян çын,
пурăннă. [3] Вăл Иисуса курасшăн питĕ тăрăшнă,
анчах хăй лутра пирки халăх хушшинчен Ăна
курайман. [4] Вара Закхей маларах чупса кайнă та
Вăл иртес тĕлти смоква йывăççи çине хăпарса тăнă.
[5] Çав вырăна çитсен Иисус çӳлелле пăхнă та Закхея
асăрханă. «Закхей! Хăвăртрах ан, Манăн паян сан
патна хăнана пымалла», – тенĕ ăна Иисус.
[6] Закхей васкаса йывăç çинчен аннă та Иисуса хăй
патне савăнсах илсе кĕнĕ. [7] Çавна курсан çынсем:
«Вăл çылăхлă çын патне кĕчĕ!» – тесе Иисуса
ӳпкелешме пуçланă. [8] Вара Закхей тăнă та Хуçамăра
çапла каланă: «Эй, Хуçамăр! Эпĕ халех хамăн
пурлăхăн çуррине чухăнсене валеçсе паратăп. Кама
та пулин улталанă пулсан, эпĕ ăна тăватă хут
ытларах тавăрса парăп». [9] «Паян Закхей кил-йышне
çăлăнăç çитрĕ, мĕншĕн тесен вăл та Авраам ачи!
[10] Этем Ывăлĕ çухалнă çынсене шыраса тупса çăлма
килнĕ», – тенĕ Иисус.

*Вунă мина укçа çинчен каланă ытарлăх*

(Мф. 25:14-30)

[11] Çакна итлекен çынсене Вăл тата тепĕр ытарлăх
каласа панă. Иисус Иерусалималла çывхарса
пынăçемĕн çынсем Турă Патшалăхĕ те часах çитĕ
тесе шутланă. [12] Иисус çапла каланă: «Пĕр чаплă
ăруран тухнă çын, патшана ларма ирĕк илсе
тавăрăнас тесе, инçетри çĕр-шыва кайма
хатĕрленнĕ. [13] Вăл вунă чурине чĕннĕ те кашнинех
пĕрер мина укçа парса каланă: „Эпĕ тавăрăниччен
эсир çак укçана ĕçе хывса тупăш тăвăр“, – тенĕ.
[14] Анчах çав çĕр-шывра пурăнакансем ăна
курайман пирки: „Вăл пирĕн патша ан пултăр!“ –
тесе калама ун хыçĕнчен хăйсен çыннисене янă.
[15] Хайхискер, патшана ларма ирĕк илсе тавăрăнсан,
кĕмĕл укçа парса хăварнă чурисене чĕнтернĕ те
кам мĕн чухлĕ тупăш тунине тĕпчеме тытăннă.
[16] Пĕр чури пынă та: „Хуçам, эсĕ парса хăварнă
мина вунă мина тупăш кӳчĕ“, – тенĕ. [17] „Аван, эсĕ
ырă чура! Пĕчĕк тивĕçе тӳрре кăларнăшăн эпĕ сана
вунă хула пуçлăхĕ тăватăп“, – тенĕ ăна хуçи. [18] Унтан
иккĕмĕш чури те: „Хуçам, эсĕ парса хăварнă мина
пилĕк мина тупăш кӳчĕ“, – тенĕ. [19] „Сана та пилĕк
хула пуçлăхĕ тăватăп“, – тенĕ хуçи ăна. [20] Кайран
виççĕмĕшĕ пырса çапла каланă: „Хуçам! Акă эсĕ
парса хăварнă мина, эпĕ ăна тутăрпа чĕркесе
усрарăм. [21] Эпĕ санран хăрарăм, мĕншĕн тесен эсĕ
хытă чунлă çын: памасăрах илетĕн, акмасăрах
выратăн“. [22] Хуçи ăна каланă: „Эй, усал чура! Эпĕ
сана хăвăн сăмахусемпех айăплатăп! Эпĕ хытă
чунлă пулнине, памасăрах илнине, акмасăрах
вырнине эсĕ пĕлнĕ. [23] Апла мĕншĕн ман кĕмĕл
укçана усламçăсене те пулин памарăн? Тавăрăнсан
эпĕ тупăш илнĕ пулăттăм“. [24] Унтан хуçа хăй умĕнче
тăракансене каланă: „Унри пĕр мина укçана илĕр
те вунă мина укçаллă чурама парăр“. [25] „Хуçамăр,
унăн ахаль те вунă мина пур вĕт“, – тенĕ лешсем.
[26] „Калатăп сире: камăн пур, ăна татах парĕç. Камăн
çук, унăнне мĕн пур пеккине те туртса илĕç, – тенĕ
хуçа. [27] – Эпĕ хăйсен патши пулнипе килĕшмен леш
тăшманăмсене кунта илсе килĕр те хам куç
умĕнчех вĕлерĕр“».

*Иисус Христос Иерусалим хулине кĕни*

(Мф. 21:1-11; Мк. 11:1-11; Ин. 12:12-19)

[28] Çакна каласан Иисус малалла кайнă. Вăл
Иерусалим хулинелле хăпарса пынă. [29] Елеон текен
ту патĕнчи Вифагипе Вифани патне çывхарсан Вăл
икĕ вĕренекенне [30] çапла каласа янă: «Хамăр умра
ларакан çак яла кайăр. Эсир унта кĕрсенех кăкарса
хунă çамрăк ашака курăр, ун çине ку таранччен
никам та утланса çӳремен. Эсир ăна вĕçертсе
çавăтса килĕр. [31] Кам та пулин сирĕнтен: „Ашака
мĕншĕн вĕçертетĕр?“ – тесе ыйтсан, „Вăл Хуçамăра
кирлĕ“, – тейĕр». [32] Вĕренекенĕсем яла çитсен
пĕтĕмпех Иисус каланă пек пулса иртнĕ. [33] Ашакне
вĕçертнĕ чух хуçисем вĕсенчен: «Ашак тихине
мĕншĕн вĕçертетĕр?» – тесе ыйтнă. [34] «Вăл
Хуçамăра кирлĕ», – тенĕ лешсем. [35] Унтан вĕсем
ашак тихине çавăтса пынă та ун çине хăйсен
тумтирне хунă, ашак çине Иисуса утлантарнă.
[36] Ашак çине утланнă Иисус пынă чух çынсем
хăйсен тумтирĕсене çул тăрăх сарса пынă.
[37] Иисус Елеон тăвĕ çинчен анмалли вырăна
çитсен вĕренекенĕсем пурте, темĕн чухлĕн, хăйсем
курнă мĕн пур хăватсемшĕн Турра мухтаса, савăнса
хытă кăшкăрма пуçланă: [38] «Хуçа Турă ячĕпе
килекен Патша мухтавлă! Пĕлĕт çинче канăçлăх,
çӳлте мухтав пултăр!» [39] Халăх хушшинчен хăш-пĕр
фарисейсем Иисуса каланă: «Вĕрентекен, Хăвăн

вĕренекенӳсене чар!» – тенĕ. 40 «Калатăп сире, –
тенĕ Иисус вĕсене хирĕç, – вĕсем шăплансан
чулсем кăшкăрма пуçлĕç».

### Иисус Иерусалимшăн йĕни

41 Иерусалим патне çывхарсан Иисус хула çине
пăхнă та ун шăпишĕн хурланса йĕрсе янă. 42 Вара
çапла каланă: «Эх, Иерусалим! Хăвна мĕн канăçлăх
кӳнине эсĕ çак кунсенче те пулин пĕлес пулсанччĕ,
анчах та вăл халĕ саншăн пытарăнчăк. 43 Акă
кунсем çитĕç, тăшманусем сана хупăрласа илĕç,
йĕри-тавра шăтăксем чавĕç, пур енчен те хĕстерсе
çитерĕç. 44 Вĕсем сана та, ачусене те тĕп тăвĕç; çак
вырăнта чул çинче чул та хăвармĕç, мĕншĕн тесен
эсĕ хăвăн патна Турă килнĕ вăхăта пĕлеймерĕн».

*Иисус Турă Çуртĕнчи сутуçăсене хăваласа кăларни*
(Мф. 21:12-17; Мк. 11:15-19; Ин. 2:13-22)

45 Иисус Турă Çуртне кĕнĕ те унта суту-илӳ
тăвакансене хăваласа кăларма пуçланă, 46 вĕсене
çапла каланă: «„Манăн çуртăм – кĕлĕ çурчĕ“, – тенĕ
Çырнинче. Эсир вара ăна вăрă-хурах йăви туса
хунă!»
47 Иисус кашни кун Турă Çуртĕнче вĕрентнĕ. Аслă
священниксем, саккун вĕрентӳçисемпе халăх
хушшинчи ятлă-сумлă çынсем вара Ăна
пĕтересшĕн пулнă, 48 анчах нимĕнле те май
тупайман, мĕншĕн тесен пĕтĕм халăх, Иисуса итлес
тесе, Унран уйăрăлман.

*Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?*
(Мф. 21:23-27; Мк. 11:27-33)

20 Пĕррехинче, Иисус Турă Çуртĕнче халăха
Ырă Хыпар каласа вĕрентнĕ чух, Ун патне
аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем тата
ятлă-сумлă çынсем пынă та: 2 «Эсĕ çакна мĕнле
тивĕçпе тăватăн? Кам Сана çакнашкал ирĕк панă?»
– тесе ыйтнă. 3 «Манăн та сирĕнтен пĕр сăмах
ыйтмалли пур, – тавăрнă вĕсене Иисус. – Калăр-ха
Мана, Иоанн шыва кĕртни çӳлтен е этемрен
пулнă?» 5 Лешсем вара пĕр-пĕринпе канашлама
пуçланă: «„Çӳлтен“, – тесен, „Эсир мĕншĕн Иоана
ĕненмерĕр?“ – тейĕ Вăл. 6 „Этемрен“, – теес, пĕтĕм
халăх пире чулпа пере-пере вĕлерĕ, мĕншĕн тесен
халăх Иоана пророк тесе шанать». 7 Вара вĕсем:
«Пĕлместпĕр!» – тесе хуравланă. 8 «Эппин Эпĕ те
сире çакна мĕнле тивĕçпе тунине каламастăп», –
тенĕ вĕсене Иисус.

*Усал пахчаçăсем çинчен каланă ытарлăх*
(Мф. 21:33-46; Мк. 12:1-12)

9 Кайран Иисус халăха çакăн пек ытарлăх каласа
панă: «Пĕр çын иçĕм çырли лартса пахча тунă та
ăна тара тытнă пахчаçăсене парса хăварса хăй
нумайлăха тухса кайнă. 10 Иçĕм çырли пухма вăхăт
çитсессĕн çав хуçа чурине пахчаçăсем патне çырла
илме янă. Анчах лешсем ăна хĕнесе тăкнă та пуш
алăпах кăларса янă. 11 Вара вăл тата тепĕр чурине
янă. Пахчаçăсем ăна та хĕнесе-вăрçса нимĕнсĕрех
янă. 12 Вара вăл виççĕмĕш чурине ярса пăхнă.
Лешсем ăна аманиччenex хĕненĕ те пахчаран
кăларса пăрахнă. 13 Унтан пахча хуçи: „Мĕн тăвам-
ши? Юратнă ывăлăма ярса пăхам-ха, тен, ăна
курсан, вăтанĕç“, – тенĕ. 14 Анчах та пахчаçăсем,
хуçа ывăлне курсан: „Ашшĕн пурлăхĕ çакна
юлмалла, атьăр ăна вĕлерер те тивĕçлĕ еткерне
хамăр илер“, – тесе шут тунă. 15 Вĕсем вара ăна
пахчаран илсе тухнă та вĕлернĕ. Çавăн хыççăн
пахча хуçи вĕсене мĕн тăвĕ? 16 Вăл килсе çав
пахчаçăсене вĕлерттерĕ те пахчине урăххисене
парĕ». Çак ытарлăха итлекенсем вара: «Ун пек ан
пултăрах!» – тенĕ. 17 Анчах та Иисус вĕсене
тинкерсе пăхнă та: «„Çурт тăвакансем пăрахăçланă
чул никĕсри тĕп чул пулса тăчĕ“, – тесе çырни мĕне
пĕлтерет? 18 Çав чул çине ӳкекен арканĕ. Чулĕ хăй
кам çине ӳкĕ, ăна лапчăтса пăрахĕ», – тенĕ. 19 Вара
аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем çак
ытарлăха хăйсем çинчен каланине ăнланса илнĕ.
Çавăнтах вĕсем Иисуса ярса тытасшăн пулнă, анчах
та халăхран хăранă.

*Рим патшине тӳлемелли налук*
(Мф. 22:15-22; Мк. 12:13-17)

20 Вĕсем Ăна сăнасах тăнă. Пуçлăхсен, влаçсен
аллине тытса памашкăн Иисус каланинче
айăпламалли сăлтав тупас тесе Ун патне вĕсем ырă
пуланçи чее çынсене янă. 21 Лешсем вара Иисусран
ыйтнă: «Вĕрентекен! Эсĕ тĕрĕс каланине, тĕрĕс
вĕрентнине тата çынна вăл кам пулнине кура
хакламаннине эпир пĕлетпĕр. Эсĕ, чăнах та, Турă
çулĕ çинчен вĕрентетĕн. 22 Эппин каласамччĕ: эпир
Рим патшине налук пани тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и?»
23 Иисус вара, вĕсен чеелĕхне пĕлсе тăрса: «Мĕн
эсир Мана илĕртсе тĕрĕслетĕр? – тенĕ. 24 – Укçăра
кăтартăр-ха Мана. Ун çине кам сăнне çаптарнă, кам
ятне çырнă?» Вĕсем Ăна хирĕç: «Патшанне», – тесе
тавăрнă. 25 Иисус вĕсене каланă: «Эппин патшанне
патшана парăр, Туррăнне – Турра». 26 Çапла вĕсем
Иисус çын çинче каланă сăмахĕнче айăп тупайман,
Унăн хуравĕнчен тĕлĕнсе шăпланнă.

*Вилнисем чĕрĕлсе тăрасси çинчен ыйтни*
(Мф. 22:23-33; Мк. 12:18-27)

27 Кайран Иисус патне вилнисем чĕрĕлессине
ĕненмен саддукейсенчен хăшĕ-пĕрисем пырса
çапла ыйтнă: 28 «Вĕрентекен, Моисей пирĕн валли
çапла çырса хăварнă: „Камăн та пулин авланнă
пиччĕшĕ ача-пăчасăр вилсен, шăллĕ унăн арăмне
качча илтĕр, пиччĕшĕн йăхне тăстăр“. 29 Пĕр кил-
йышра çичĕ пĕртăванччĕ. Асли авланчĕ те ача-
пăча хăвармасăрах вилчĕ. 30 Вара ун арăмне
иккĕмĕшĕ качча илчĕ, вăл та ача-пăча хăвармасăр
вилчĕ. 31 Унтан çав хĕрарăмпа виççĕмĕшĕ
пĕрлешрĕ. Çапла çичĕ тăванĕ те ăна качча илчĕç,
анчах пурте ачаллă пулаймасăрах вилчĕç.
32 Пуринчен кайран хĕрарăмĕ те вилчĕ. 33 Ĕнтĕ
вилнĕ çынсем чĕрĕлсе тăрас вăхăт çитсен вăл
хăшĕн арăмĕ пулĕ? Çиччĕшĕ те унпа пурăннă-çке-
ха».
34 Иисус вĕсене çапла хуравланă: «Çак пурăнăçра
пурăнакансем авланаççĕ те, качча та каяççĕ.

35 Анчах та лери пурăнăçра вилĕмрен чĕрĕлсе тăма
тивĕçлĕ пулнисем авланмаççĕ те, качча та
каймаççĕ. 36 Вĕсем ĕнтĕ, чĕрĕлсе тăма тивĕçлĕ
пулнисем – Турă ачисем, ангелсемпе танах
вилĕмсĕр. 37 Вилнисем чĕрĕлсе тăрасси пирки вара
Моисей кĕнекинче çунса тăракан тĕмĕ çинчен
каланă вырăн пур. Хуçамăр унта ăна: „Эпĕ – Авраам
Турри те, Исаак Турри те, Иаков Турри те“, – тенĕ.
38 Турă вăл вилнисен Турри мар, чĕррисен Турри.
Уншăн пурте чĕрĕ». 39 Вара хăш-пĕр саккун
вĕрентӳçисем Ăна хирĕç: «Вĕрентекен, Эсĕ аван
каларăн», – тенĕ.
40 Çавăн хыççăн пĕри те Иисуса ыйтусем пама
хăяйман.

*Турă Суйласа илни кам йăхĕнчен пулмалла?*
(Мф. 22:41-46; Мк. 12:35-37)

Иисус вара вĕсенчен ыйтнă: 41 «Епле-ха тата Турă
Суйласа илни Давид йăхĕнчен пулмалла теççĕ?
42 Давид хăй вара псалом кĕнекинче çапла çырнă:
„Хуçамăр манăн Хуçама каланă: Эпĕ Сан
тăшманусене Санăн уру айне тăвиччен Эсĕ Манăн
сылтăм енче, хисеплĕ вырăнта лар“. 44 Çапла вара,
Давид Ăна Хуçам тет. Эппин епле-ха Вăл унăн
йăхĕнчен пулма пултарать?»

*Саккун вĕрентӳçисенчен асăрхаттарни*
(Мф. 23:1-36; Мк. 12:38-40; Лк. 11:37-54)

45 Пĕтĕм халăх Иисус сăмахне итлесе тăнă чухне
Вăл Хăйĕн вĕренекенĕсене çапла каланă: 46 «Саккун
вĕрентӳçисенчен сыхланăр. Вĕсем вăрăм тумтирпе
саркаланса çӳреме юратаççĕ, халăх йышлă çĕрте
хăйсене саламланине килĕштереççĕ; синагогăра
малта ларма, ĕçкĕ-çикĕре кĕрекере ларма
юратаççĕ. 47 Çавсем ĕнтĕ тăлăх арăмсене кил-
çуртсăр хăвараççĕ тата çын умĕнче юриех
нумайччен кĕлтăваççĕ. Вĕсене ыттисенчен те
йывăртарах айăплав пулĕ».

*Тăлăх арăмăн икĕ вак укçи*
(Мк. 12:41-44)

21 Унтан Иисус çавăрăнса пăхнă та Турă
Çуртĕнчи парне арчине пуянсем хăйсен
укçине янине курнă. 2 Пĕр чухăн тăлăх арăм та
пырса икĕ лептăлăх вак укçа хунă. 3 Çавна курсан
Иисус каланă: «Чăннипех те, çак чухăн тăлăх арăм
пуринчен те ытларах хучĕ. 4 Мĕншĕн тесен пурте
ытлашшине Турра парне пачĕç. Ку вара хăйне
тăранса пурăнмалăх юлашки пур-çук укçине
пĕтĕмпех хучĕ».

*Турă Çуртне аркатасси çинчен*
(Мф. 24:1-2; Мк. 13:1-2)

5 Иисусăн хăш-пĕр вĕренекенĕсем Турă Çурчĕ
çинчен: «Вăл епле капмар! Ăна хаклă чулсемпе,
Турра парнеленĕ япаласемпе илемлетнĕ», – тесе
калаçнă. Çавăн чухне Иисус вĕсене каланă: 6 «Вăхăт
çитĕ, эсир çакăнта куракан çуртсене пĕтĕмпех
аркатĕç, чул çинче чул та юлмĕ».
7 «Вĕрентекен, вăл хăçан пулĕ? Çавă пуласса
мĕнле паллă тăрăх пĕлмелле?» – тесе ыйтнă Унран
вĕренекенĕсем. 8 Иисус вара çапла каланă: «Хăвăра
илĕртсе улталасран асăрханăр, мĕншĕн тесен
нумайăшĕ Ман ятăмпа килĕç те: „Эпĕ – Христос!“ –
тейĕç. „Ĕнтĕ вăхăт пĕтесси çывăх!“ – тейĕç. Вĕсем
хыççăн ан кайăр. 9 Вăрçăсем çинчен, халăх
пăлханни çинчен илтсен хăраса ан ӳкĕр. Çавă
малтан пулмалла, анчах ун хыççăн та тӳрех вăхăт
пĕтмĕ-ха». 10 Иисус татах каланă: «Халăх çине халăх
тапăнĕ, патшалăх çине патшалăх вăрçăпа тухĕ;
11 вырăнăн-вырăнăн питĕ хытă çĕр чĕтреннисем,
выçлăх çулсем тата вĕлерекен чир-чĕрсем пулĕç.
Тӳпере хăрушă пулăмсемпе аслă паллăсем курăнĕç.
12 Çаксем пурте пуличчен, малтан, Ман ятăмшăн
сирĕн çине алă çĕклĕç, синагогăсемпе тĕрмесене
тытса парса хĕсĕрлĕç, пуçлăхсемпе патшасем умне
илсе пырса тăратĕç. 13 Çакă йăлтах Ман çинчен
çирĕплетсе пĕлтермешкĕн пулĕ. 14 Çакна чĕре
варне хурăр: мĕн тавăрса калас-ши тесе малтанах
ан кулянăр, 15 мĕншĕн тесен Эпĕ сирĕн чĕлхе-
çăварăра ăслăлăх парăп. Тăшманăрсенчен пĕри те
сире хирĕç сăмах тупса калаймĕ, сире хирĕç
тăраймĕ. 16 Тата сире аçăр-аннĕрсем те, тăванăрсем
те, хурăнташăрсем те, тусăрсем те сутĕç, сиртен
хăшне-пĕрне вĕлерĕç. 17 Ман ятăмшăн сире пурте
курайми пулĕç. 18 Анчах та сирĕн пуçăр çинчи пĕр
çӳç пĕрчине пĕтерни те Турă ĕçĕшĕн усăсăр пулмĕ.
19 Чăтăмлă пулнипе чунăрсене çăлса хăварăр».

*Иерусалима аркатасси çинчен*
(Мф. 24:15-21; Мк. 13:14-19)

20 «Иерусалима йĕри-тавра çар хупăрласа илнине
курсан, вара унăн юхăнса тăрас вăхăчĕ çывхарнине
пĕлĕр! 21 Иудея халăхĕ ун чухне тусем çине тартăр,
Иерусалимри çынсем хăвăртрах хуларан тухчăр,
хула таврашĕнчисем хулана ан кĕччĕр. 22 Мĕншĕн
тесен çак кунсем – тавăру кунĕсем, вĕсем пирки
Çырнинче мĕн калани йăлтах пурнăçланĕ. 23 Çав
кунсенче йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, кăкăр
çитерекен амăшĕсене хуйхă пулĕ. Çĕр çине пысăк
асаплăх килĕ, çак халăха Турă çилли çитĕ.
24 Пĕрисене хĕçпе вĕлерĕç, теприсене тĕрлĕрен
урăх халăх хушшине тыткăна илсе кайĕç.
Иерусалима ют халăхсем хăйсен вăхăчĕ
иртичченех таптĕç».

*Христос тепĕр хут килесси*
(Мф. 24:29-31; Мк. 13:24-27)

25 «Хĕвелпе уйăх çинчи, çăлтăрсем çинчи
пулăмсем хăрушă паллăсем пулĕç. Çĕр çинчи
халăхсем хуйха ӳкĕç, ăнран кайĕç. Тинĕс шавласа,
кĕрлесе тăрĕ. 26 Тӳпери вăй-хăватсем кисренĕç.
Çавăнпа та, тĕнчене килес асапсене кĕтсе, çынсем
вилесле сехĕрленсе ӳкĕç. 27 Вара тӳпери пĕлĕт
çинче аслăран та аслă мухтавпа тата хăватпа
килекен Этем Ывăлне курĕç. 28 Çаксем пула
пуçласан пуçăрсене усас вырăнне çĕклĕр, мĕншĕн
тесен сирĕн çăлăнас вăхăтăр çывхарать».

*Смоква йывăççипе танлаштарни*
(Мф. 24:32-35; Мк. 13:28-31)

29 Унтан Иисус вĕсене ытарлăх каласа панă:
«Смоква йывăççи çине, ытти мĕн пур йывăççсем
çине пăхăр-ха. 30 Вĕсем çулçă кăлара пуçласан эсир
çу çывхарса килнине пĕлетĕр. 31 Çавăн пекех,

çаксем пула пуçланине курсан, Турă Патшалăхĕ
çывăххине пĕлĕр. 32 Чăн калатăп сире: çаксем пурте
çак ăру пĕтичченех пулса иртĕç. 33 Çĕрпе пĕлĕт те
пĕтĕ, Ман сăмахăмсенчен пĕри те пĕтмĕ».

### Сыхă тăма чĕнни

34 «Хăвăра хăвăр асăрхăр: çиесшĕн, ĕçсе
ӳсĕрĕлесшĕн çăткăнланса ан çӳрĕр, пурăнăç хуйхи-
суйхипе кăмăлăрсене ан хуçăр. Çав кун сирĕншĕн
кĕтмен çĕртен ан пултăр, 35 мĕншĕн тесен çав кун
пĕтĕм çĕр пичĕ çинче пурăнакансене тетеле
çаклатнă пек çаклатĕ. 36 Çавăнпа ĕнтĕ яланах сыхă
тăрăр, çав килес асапсенчен хăтăлма вăй-хал ыйтса
кĕлтăвăр, Этем Ывăлĕ умне тăма тивĕçлĕ пулăр».
37 Кăнтăрла Иисус Турă Çуртĕнче вĕрентнĕ,
каçхине хуларан тухса Елеон ятлă ту çинче çĕр
каçнă. 38 Вăл вĕрентнине итлеме пĕтĕм халăх
куллен ир-ирех Турă Çуртне пуçтарăннă.

*Иисуса хирĕç тунă кавар*

(Мф. 26:1-5, 14-16; Мк. 14:1-2, 10-11; Ин. 11:45-53)

22 Тутлăлла çăкăр уявĕ, пасха текен уяв,
çывхарса килнĕ. 2 Аслă священниксемпе
саккун вĕрентӳçисем, халăхран хăранипе, Иисуса
вĕлерме вăрттăн май шыранă. 3 Вун иккĕшĕнчен
пĕрин, Искариот текен Иудăн, ăшне шуйттан кĕнĕ.
4 Вăл вара кайнă та Иисуса мĕнле тытса парасси
çинчен аслă священниксемпе, пуçлăхсемпе канаш
тунă. 5 Лешсем савăннипе ăна укçа пама пулнă.
6 Вара Иуда, вĕсемпе килĕшсе татăлсан, Иисуса
халăхран вăрттăн тытса пама меллĕ вăхăт шыранă.

*Пасха апачĕ тума хатĕрленни*

(Мф. 26:17-25; Мк. 14:12-21; Ин. 13:21-30)

7 Тутлăлла çăкăр уявĕ çитнĕ. Çавăн чухне пасха
валли путек пусмалла пулнă. 8 Иисус вара Петрпа
Иоана çапла каласа янă: «Кайăр та хамăр валли
пасха апачĕ хатĕрлесе хурăр». 9 «Эсĕ пире ăçта
хатĕрлеме хушатăн?» – тесе ыйтнă Унран вĕсем.
10 Иисус вĕсене çапла каланă: «Эсир хулана пырса
кĕнĕ чух кăкшăмпа шыв çĕклесе пыракан çынна
тĕл пулăр. Вара ун хыçĕнчен кайăр та вăл кĕрекен
çурта кĕрĕр. 11 Унтан кил хуçине калăр: „Вĕрентекен
санран ыйтать: Манăн пасха апатне
вĕренекенĕмсемпе пĕрле хăш пӳлĕмре çимелле
пулать?“ 12 Вăл сире янтăласа хунă пысăк та хăтлă
пӳлĕм кăтартĕ, çавăнта хатĕрлĕр». 13 Петрпа Иоанн
хулана кайсан пĕтĕмпех Иисус каланă пек пулса
иртнĕ. Унтан вĕсем пасха апачĕ хатĕрлесе хунă.

*Аслă каçхи апат*

(Мф. 26:26-30; Мк. 14:22-26; 1 Кор. 11:23-25)

14 Вăхăт çитсен Иисус вун икĕ апостолĕпе пĕрле
сĕтел хушшине ларнă. 15 Унтан вĕсене çапла
каланă: «Пасха апачĕ Турă Патшалăхĕнче пулса
çитмесĕр те Эпĕ ăна урăх çиеймĕп, çавăнпа калатăп
та сире: асап куриччен малтан Манăн ăна питĕ
сирĕнпе ларса çиес килет». 17 Вара Иисус курка илсе
Турра тав тунă та каланă: «Çакна илĕр те кашниех
ĕçсе парăр. 18 Калатăп сире: Турă Патшалăхĕ
килмесĕр те Эпĕ ĕнтĕ иçĕм çырли эрехне ĕçеймĕп».
19 Вăл тата çăкăр илсе Турра тав тунă та,
вĕренекенĕсене хуçа-хуçа парса, каланă: «Çакă –
сирĕншĕн паракан Манăн Ӳтĕм. Малашне те Мана
аса илсе çак йăлана тăвăр». 20 Каçхи апат хыççăн,
çавнашкалах, Иисус курка илсе каланă: «Çак курка –
сирĕншĕн юхакан Юнăмпа çирĕплетнĕ Çĕнĕ Халал.
21 Акă ĕнтĕ Мана сутакан та Манпа пĕрле çак сĕтел
хушшинчех ларать. 22 Этем Ывăлĕн малтанах
палăртнă çулне утса тухмаллах, анчах та Ăна тытса
паракана хуйхă пулĕ».
23 Вĕренекенĕсем вара пĕр-пĕринчен ыйтса:
«Пирĕн хушшăмăртан кам тытса пама пултарĕ-
ши?» – тесе калаçнă.

### Тарçă пек пулăр

24 Çавăнтах тата вĕсем хăйсем хушшинче хăшĕ
аслăраххи пирки тавлашма тытăннă. 25 Иисус
вĕсене каланă: «Патшасем халăхпа хуçаланаççĕ,
халăхпа пуç пулакансене „ырă хуçам“ теççĕ. 26 Эсир
унашкал ан пулăр. Сирĕн хушшăрта асли кĕçĕнни
пек пултăр, хуçи те тарçă пек пултăр. 27 Хăшĕ аслă:
кĕрекере лараканни-и е ĕçлесе тăракан тарçи?
Кĕрекере лараканни мар-и вара? Анчах та акă Эпĕ
сирĕн хушшăрта тарçă пек пултăм. 28 Мана йывăр
чухне эсир Манпа пĕрле пултăр. 29 Ман
Патшалăхăмра кĕрекере ĕçсе çиччĕр тесе,
Израилĕн вун икĕ ăрăвĕн тӳри пулма престол çине
ларччăр тесе Аттем Мана Патшалăх парса хăварнă
пекех, Эпĕ те сире Патшалăх шанса парса
хăваратăп».

*Петр тунасса Иисус малтанах калани*

(Мф. 26:31-35; Мк. 14:27-31; Ин. 13:36-38)

31 Иисус вара каланă: «Эх, Симон, Симон! Акă ĕнтĕ
шуйттан сире тулă алланă пек аллама ирĕк ыйтса
илчĕ. 32 Анчах та ĕненĕвӳ ан чактăр тесе Эпĕ
саншăн кĕлтурăм. Эсĕ те кайран, ху тĕрексĕр
пулнăшăн ӳкĕнсен, тăвануслене тĕреклĕх пар».
33 «Хуçамăр, эпĕ Санпа пĕрле тĕрмене ларма та,
вилме те хатĕр!» – тенĕ Ăна Петр. 34 «Петр, сана
калатăп: кĕçĕр, автан авăтиччен, эсĕ Мана виçĕ
хутчен пĕлмĕш пулăн», – тенĕ ăна Иисус.
35 Унтан вĕренекенĕсенчен ыйтнă: «Эпĕ сире укçа
енчĕкĕсĕр, хутаççăр, пушмаксăр янă чух сирĕн мĕн
те пулин çитменни пулчĕ-и?» Лешсем Ăна хирĕç:
«Çитменни нимĕн те пулмарĕ!» – тенĕ. 36 Иисус
вĕсене каланă: «Халĕ ĕнтĕ укçа енчĕкĕ пуррисем
ăна илччĕр, хутаçне те илччĕр. Камăн хĕç çук, вăл
тумтирне сутса хĕç илтĕр. 37 Мĕншĕн тесен
Çырнинче: „Ăна вăрă-хурах шутне кĕртĕç“ тесе
калани Манпа пурнăçланмаллах, çакă часах пулса
иртмелле». 38 «Хуçамăр! Акă кунта икĕ хĕç пур», –
тенĕ вĕсем. «Çитет», – тенĕ Вăл вĕренекенĕсене.

*Елеон тăвĕ çинче кĕлтуни*

(Мф. 26:36-46; Мк. 14:32-42)

39 Унтан тухсан Иисус хăнăхнă йăлипе Елеон тăвĕ
çине кайнă. Унпа пĕрле вĕренекенĕсем те пынă.
40 Вырăна çитсен Иисус вĕсене каланă: «Илĕртнипе
çылăха кĕрес марччĕ тесе кĕлтăвăр». 41 Хăй вара

вӗсем патӗнчен пӗр вӑтӑр утӑма кайнӑ та
чӗркуҫленсе ларса 42 ҫапла кӗлтунӑ: «Эй, Аттем!
Кӑмӑлу пулсан, ҫак асап куркине Манран ирттерсе
ярсамччӗ. Ҫапах та Ман ирӗк мар, Санӑн ирӗкӳ
пултӑр». 43 Вара тӳперен ангел курӑнса Ӑна вӑй-
хӑват панӑ. 44 Пӑлхана-пӑлхана Иисус тата хытӑрах
кӗлтунӑ. Унӑн тарӗ ҫӗре юн пек тумланӑ. 45 Кӗлтунӑ
хыҫҫӑн Вӑл вӗренекенӗсем патне пынӑ та лешсем
куляна-куляна ҫывӑрсах кайнине курнӑ. 46 «Эсир
мӗншӗн ҫывӑратӑр? Илӗртнипе ҫылӑха кӗрес
марччӗ тесе, тӑрса кӗлтӑвӑр», – тенӗ вӗсене Иисус.

*Иисуса тытни*

(Мф. 26:47-56; Мк. 14:43-50; Ин. 18:3-11)

47 Иисус ҫапла каласа тӑнӑ чух унта пӗр ушкӑн
халӑх пырса ҫитнӗ. Вӗсен умӗнче Вун иккӗшӗнчен
пӗри, Иуда ятли, пынӑ. Вӑл Иисуса чуптума Ун умне
пырса тӑнӑ, мӗншӗн тесен Иуда лешсене: «Эпӗ
Кама чуптӑвӑп, Ҫавӑ Иисус пулӗ», – тесе паллӑ пама
пулнӑ . 48 Иисус вара ӑна каланӑ: «Иуда, Этем
Ывӑлне чуптусах тытса паратӑн-и?»
49 Иисуспа пӗрле пулнисем, ӗҫ-пуҫ епле кайнине
курсан: «Хуҫамӑр, хӗҫсене кӑларар мар-и?» – тенӗ
Ӑна. 50 Вӗсенчен пӗри аслӑ священникӑн чурине
хӗҫпе сулса янӑ та унӑн сылтӑм хӑлхине касса
татнӑ. 51 Иисус вӗсене каланӑ: «Чарӑнӑр, ҫитӗ!»
Унтан Вӑл ҫав тарҫӑ хӑлхине сӗртӗнсе сыватнӑ.
52 Хӑйне тытма пынӑ аслӑ священниксене, Турӑ
Ҫурчӗн хурал пуҫлӑхӗсене, ятлӑ-сумлӑ ҫынсене
Иисус ҫапла каланӑ: «Эсир Мана тытма, вӑрӑ-
хураха хирӗҫ тухнӑ пек, хӗҫсемпе, шалҫасемпе
килтӗр. 53 Эпӗ кашни кун сирӗнпе пӗрле Турӑ
Ҫуртӗнче пултӑм, эсир ун чух Мана тӗкӗнмерӗр.
Халӗ ӗнтӗ тӗттӗмлӗх хуҫаланать, ку – сирӗн
вӑхӑтӑр».

*Петр Иисуса пӗлмӗш пулни*

(Мф. 26:57-58, 69-75; Мк. 14:53-54, 66-72; Ин. 18:12-18, 25-27)

54 Вӗсем Иисуса ярса тытнӑ та аслӑ священник
ҫуртне илсе кайнӑ. Петр вӗсем хыҫҫӑн чылай
каярахра утса пынӑ. 55 Ҫынсем картиш варринче
кӑвайт хурса пурте йӗри-тавра пухӑнсан, вӗсен
хушшине Петр та пырса ларнӑ. 56 Пӗр хӗрарӑм
тарҫӑ, Петр кӑвайт умӗнче ларнине курсан, ун ҫине
тинкерсе пӑхса каланӑ: «Ку ҫын та Унпа пӗрлеччӗ».
57 Анчах та Петр, Иисусран тунса, ҫав хӗрарӑма:
«Эпӗ Ӑна пӗлместӗп», – тесе тавӑрнӑ. 58 Кӑштахран
тепри ӑна асӑрханӑ та: «Эсӗ те ҫав ушкӑнранахчӗ»,
– тенӗ. Петр ҫав ҫынна та: «Ҫук, ҫук!» – тенӗ.
59 Сехете яхӑн вӑхӑт иртсен татах тепри ҫине
тӑрсах: «Чӑнах, ку та Унпа пӗрлеччӗ, ку Галилея
ҫынни», – тенӗ. 60 «Эсӗ тем калаҫатӑн, пӗлместӗп», –
тенӗ Петр ӑна хирӗҫ. Вӑл ҫапла каласа тӑнӑ
вӑхӑтрах сасартӑк автан авӑтса янӑ. 61 Хуҫамӑр
ҫавӑрӑнса Петр ҫине тинкерсе пӑхнӑ. Петр вара
Хуҫамӑр сӑмахӗсене: «Автан авӑтиччене эсӗ Мана
виҫӗ хут пӗлмӗш пулӑн», – тенине аса илнӗ.
62 Унтан Петр картишӗнчен тухнӑ та татӑлсах
йӗнӗ.

*Иисусран мӑшкӑлласа кулни*

(Мф. 26:67-68; Мк. 14:65)

63 Иисуса хураллакан салтаксем Унран ҫав тери
мӑшкӑлласа кулнӑ, хӗнесе пӗтернӗ. 64 Вӗсем Унӑн
куҫне хупласа питрен ҫупа-ҫупа ярса ыйтнӑ: «Эсӗ
пророк пулсан, кала, кам ҫапрӗ Сана?» 65 Ӑна урӑх
сӑмахсем каласа та нумай хур тунӑ.

*Иисуса синедриона илсе пыни*

(Мф. 26:59-66; Мк. 14:55-64; Ин. 18:19-24)

66 Тул ҫутӑлсанах халӑх хушшинчи ятлӑ-сумлӑ
ҫынсемпе аслӑ священниксем тата саккун
вӗрентӳҫисем пуҫтарӑннӑ. Вӗсем Иисуса синедрион
канашӗ умне тӑратса: 67 «Каласам пире: Эсӗ Турӑ
Суйласа илни-и? Христос-и?» – тенӗ. «Эпӗ сире
каласан та, эсир Мана ӗненмӗр, – тавӑрнӑ Иисус.
68 – Хӑвӑртан ыйтсан та эсир Мана хирӗҫ тавӑрса
каламӑр, Мана ирӗке те ямӑр. 69 Паянтан пуҫласа,
малашлӑхра, Этем Ывӑлӗ хӑватлӑ Туррӑн сылтӑм
енне ларӗ». 70 Вара пурте: «Апла Эсӗ – Турӑ Ывӑлӗ-
и?» – тесе ыйтма пуҫланӑ. Иисус хуравланӑ: «Вӑл
Эпӗ тесе эсир каларӑр». 71 Лешсем вара: «Ун айӑпне
кӑтартни мӗн тума кирлӗ тата пире? Ӗнтӗ Унӑн
сӑмахӗсене хамӑр хӑлхапа хамӑрах илтрӗмӗр!» –
тенӗ.

*Иисус Пилат патӗнче*

(Мф. 27:1-2, 11-14; Мк. 15:1-5; Ин. 18:28-38)

23 Унтан синедрион канашӗнчисем пӗтӗм
йышӗпех пурте тӑнӑ та Иисуса Пилат патне
илсе кайнӑ. 2 Вара Ӑна ҫапла айӑплама пуҫланӑ: «Ку
Ҫын пирӗн халӑха пӑлхатса ҫӳрет. Хӑйне Христос
Патша тесе императора налук тӳлеме хушмасть!»
3 Пилат Иисусран ыйтнӑ: «Эсӗ Иудея Патши-и?»
Иисус ӑна хирӗҫ: «Эсӗ ху ҫапла каларӑн», – тенӗ.
4 Пилат вара аслӑ священниксене те, халӑха та
каланӑ: «Ку Ҫынна айӑплама эпӗ нимӗнле сӑлтав та
курмастӑп». 5 Анчах лешсем ҫине тӑрса хистенӗ:
«Галилейӑран пуҫласах Вӑл пӗтӗм Иудея тӑрӑх
Хӑйӗн вӗрентӗвӗпе халӑха пӑлхатса ҫӳрет. Акӑ, халӗ
кунта килчӗ!» – тенӗ.

### Иисуса Ирод патне яни

6 Галилея тенине илтсен Пилат: «Вӑл Галилея
ҫынни-им?» – тесе ыйтнӑ. 7 Иисус хайхи Ирод тытса
тӑракан ҫӗр-шывран пулнине пӗлсен, Пилат Ӑна
шӑпах ҫав вӑхӑтра Иерусалима пынӑ Ирод патша
патне янӑ. 8 Иисуса курсан Ирод питӗ савӑннӑ,
мӗншӗн тесен вӑл Ӑна унччене курасшӑн пулнӑ.
Иисус тунӑ ӗҫсем ҫинчен Ирод нумай илтнӗ,
ҫавӑнпа Унран мӗнле те пулин хӑват курма
ӗмӗтленнӗ. 9 Ирод Ӑна тӗрлӗрен ыйтусем панӑ,
анчах Иисус хирӗҫ нимӗн те тавӑрса каламан.
10 Аслӑ священниксемпе саккун вӗрентӳҫисем вара
Иисуса хыттӑн кӑшкӑра-кӑшкӑра айӑпласа тӑнӑ.
11 Анчах та Ирод, салтакӗсемпе пӗрле, Унран
тӑраниччченех мӑшкӑлласа кулнӑ та Ӑна патшалла
ҫутӑ тум тӑхӑнтартса Пилат патне каялла янӑ.
12 Малтан пӗр-пӗринпе хирӗҫсе пурӑннӑ Пилатпа
Ирод ҫав кун туслашса кайнӑ.

*Иисуса вӗлерме ыйтни*
(Мф. 27:15-26; Мк. 15:6-15; Ин. 18:39–19:16)
13 Унтан Пилат аслӑ священниксене, пуҫлӑхсене,
халӑха чӗнсе пуҫтарнӑ та 14 вӗсене каланӑ: «Ку
Ҫынна эсир ман пата халӑха пӑтратакан тесе тытса
килтӗр. Акӑ, эпӗ сирӗн умӑртах тӗпчерӗм, анчах та
эсир айӑпланине ҫирӗплетекен пӗр сӑлтав та
тупмарӑм. 15 Ирод хӑй те ҫак Ҫынна вӗлермеллех
айӑплама нимӗнле сӑлтав та тупайман. Эпӗ Ӑна ун
патне янӑччӗ. 16 Ҫавӑнпа эпӗ Ӑна чӗн пушӑпа
хӗнеттерем те кӑларса ярам». 17 Пилатӑн пасха уявӗ
ячӗпе тӗрмере ларакансенчен пӗрне халӑх
ыйтнипе кӑларса ямалла пулнӑ . 18 Вара пӗтӗм
халӑх: «Иисуса вӗлерттер! Эпир Вараввӑна ирӗке
кӑларттарасшӑн!» – тесе кӑшкӑрма пуҫланӑ.
19 Вараввӑна хула халӑхне пӑлхатнӑшӑн, ҫын
вӗлернӗшӗн тӗрмене хупса лартнӑ пулнӑ. 20 Пилат,
Иисуса кӑларса ярасшӑн пулса, каллех халӑха
чӗнсе каланӑ. 21 Анчах та лешсем: «Пӑталаттар Ӑна!
Пӑталаттар!» – тесе кӑшкӑрнӑ. 22 Пилат вӗсене
виҫҫӗмӗш хут каланӑ: «Мӗн усалли тунӑ вара Вӑл?
Ку Ҫынна вӗлерме эпӗ нимӗнле сӑлтав та
тупмарӑм, ҫавӑнпа ӗнтӗ Ӑна хӗнеттерем те кӑларса
ярам», – тенӗ. 23 Анчах та вӗсем хыттӑн кӑшкӑрса,
ҫине тӑрсах Иисуса пӑталаттарма ыйтнӑ. Ҫапла
кӑшкӑрса-хистесе халӑхпа аслӑ священниксем
ҫиеле тухнӑ. 24 Пилат вара вӗсем ыйтнине
тивӗҫтерес тенӗ. 25 Вӑл пӑлхав ҫӗкленӗшӗн тата ҫын
вӗлернӗшӗн тӗрмене хупнӑ Вараввӑна вӗсем
ыйтнипе ирӗке кӑларса янӑ, Иисуса вара вӗсен
аллине панӑ.

*Иисус Христоса пӑталани*
(Мф. 27:32-44; Мк. 15:21-32; Ин. 19:17-27)
26 Ӑна илсе кайнӑ чух салтаксем хиртен
таврӑнакан Киринея ҫыннине, Симона, ярса
тытнӑ та, хӗрес йӑттарса, Иисус хыҫҫӑн ҫӗклесе
пыма хушнӑ. 27 Иисус хыҫӗнчен ҫынсем нумайӑн
пынӑ, хӗрарӑмсем те Уншӑн кӑшкӑрса йӗрсе утнӑ.
28 Иисус вӗсем енне ҫаврӑнса каланӑ: «Эй,
Иерусалим хӗрӗсем! Маншӑн мар, хӑвӑршӑн тата
ачӑрсемшӗн хуйхӑрса макӑрӑр. 29 Акӑ вӑхӑт ҫитӗ, ун
чухне ҫынсем: „Ача туман арӑмсем,
ҫуратманнисем, кӑкӑр ҫитерменнисем телейлӗ!“ –
тесе калӗҫ. 30 Ҫавӑн чух вӗсем тусене калӗҫ: „Пирӗн
ҫине ӳкӗр!“ Сӑртсене те: „Пире хупласа хурӑр!“ –
теме пуҫлӗҫ. 31 Ешерсе ларакан йывӑҫа ҫапла
тӑваҫҫӗ пулсан, апла хӑрӑккине мӗн пулӗ?»
32 Иисуспа пӗрле тата икӗ вӑрӑ-хураха вӗлерме
илсе пынӑ. 33 «Пуҫ купташки» текен вырӑна ҫитсен
Иисуса та, икӗ вӑрӑ-хурахне те хӗрессем ҫумне
пӑталанӑ. Пӗрне – Унӑн сылтӑм енне, теприне
сулахай енне пӑталаса хунӑ. 34 Иисус каланӑ: «Эй,
Аттем, каҫар вӗсене! Вӗсем хӑйсем мӗн тунине те
пӗлмеҫҫӗ». Иисуса пӑталанӑ салтаксем вара Унӑн
тумтирне шӑпа ярса валеҫнӗ. 35 Халӑх пӑхса тӑнӑ.
Пуҫлӑхсем те халӑхпа пӗрле Иисусран тӑрӑхласа
кулнӑ: «Ыттисене ҫӑлатчӗ! Вӑл Турӑ Суйласа илни,
Христос пулсан, Хӑйне Хӑй ҫӑлтӑр», – тенӗ.
36 Салтаксем те, пыра-пыра, Ӑна хӗрхӳлентернӗ
хӗрлӗ эрех парса, Унран мӑшкӑлласа 37 ҫапла
каланӑ: «Эсӗ Иудея Патши пулсан, Хӑвна Ху ҫӑл
ӗнтӗ!» 38 Унӑн пуҫӗ тӗлне: «Ҫакӑ – Иудея Патши», –
тесе грекла, латинла, еврейла ҫырса ҫапнӑ.
39 Хӗрес ҫумне пӑталанӑ вӑрӑ-хурахсенчен пӗри
Иисуса мӑшкӑлласа: «Эсӗ Христос пулсан, Хӑвна та,
пире те ҫӑл!» – тенӗ. 40 Тепри вара, пачах урӑхла,
ӑна чарса каланӑ: «Эсӗ Турӑран хӑрамастӑн-и-мӗн?
Хӑвна та вӗлерме суд тунӑ-ҫке. 41 Пире тӗрӗсех
айӑпланӑ, ӗҫӗмӗрсемшӗн эпир вилӗме тивӗҫлӗ.
Вӑл вара нимӗнле усал ӗҫ те туман». 42 Унтан вӑл
Иисуса: «Хуҫамӑр, Хӑвӑн Патшалӑху ҫитсен аса
илсем мана», – тенӗ. 43 Иисус ӑна каланӑ: «Чӑн
калатӑп сана, паянах эсӗ Манпа пӗрле райра
пулӑн».

*Иисус Христос вилӗмӗ*
(Мф. 27:45-56; Мк. 15:33-41; Ин. 19:28-30)
44 Кӑнтӑрла, вун икӗ сехетрен пуҫласа виҫӗ
сехетсенелле, пӗтӗм ҫӗр ҫинче сӗм тӗттӗм пулса
ларнӑ. Хӗвел тӗттӗмленнӗ. Турӑ Ҫуртӗнчи чаршав
та ҫурмалла ҫурӑлса аннӑ. 46 Иисус хытӑ кӑшкӑрса
каланӑ: «Эй, Аттем! Сывлӑшӑма Санӑн аллуна
паратӑп». Ҫапла каласанах Унӑн юлашки сывлӑшӗ
тухнӑ.
47 Ҫӗрпӳ, ҫавӑнта мӗн пулнине курсан, Турра
мухтаса каланӑ: «Ку, чӑнах та, тӳрӗ ҫын пулнӑ
иккен!» 48 Пуҫтарӑннӑ халӑх та, мӗн пулса иртнине
курсан, хӗрхеннипе пуҫӗсене усса килӗсене
таврӑннӑ. 49 Иисуса паллакансем тата Унпа пӗрле
Галилейӑран пынӑ хӗрарӑмсем ҫавна аякран пӑхса
тӑнӑ.

*Иисус ӳтне тупӑклӑха хуни*
(Мф. 27:57-61; Мк. 15:42-47; Ин. 19:38-42)
50 Иудейӑри Аримафея хулинче ҫуралса ӳснӗ пӗр
Иосиф ятлӑ ҫын пулнӑ. Вӑл, тӳрӗ тата ырӑ
кӑмӑллӑскер, иудейсен канашӗнче ларнӑ пулин те,
канаш ӗҫӗпе те, йышӑнӑвӗпе те килӗшмен. Вӑл хӑй
те Турӑ Патшалӑхне кӗтсе пурӑннӑ. 52 Иосиф, Пилат
патне пырса, унран Иисус ӳтне пама ыйтнӑ.
53 Унтан Ӑна хӗрес ҫинчен антарса пирпе чӗркенӗ
те чул ту хысакне алтса тунӑ тупӑклӑха хунӑ.
Унччен кунта никама та пытарман пулнӑ.
54 Галилейӑран Иисуспа пӗрле пынӑ хӗрарӑмсем те
Иосиф хыҫӗнчен кайнӑ, вӗсем Унӑн ӳтне тупӑклӑха
епле хунине сӑнаса тӑнӑ. Ҫакӑ эрне кун пулса
иртнӗ, шӑмат кун вара ӗҫлеме юраман, 56 ҫавӑнпа
вӗсем килне таврӑннӑ та ырӑ шӑршӑллӑ куракӑсем
тата сӗрмелли ҫусем хатӗрлесе хунӑ. Вара, саккуна
пӑхӑнса, шӑмат кун каннӑ.

*Иисус Христос чӗрӗлсе тӑни*
(Мф. 28:1-10; Мк. 16:1-8; Ин. 20:1-10)
24 Эрнен малтанхи кунӗнче, ирпе ирех,
хатӗрлесе хунӑ ырӑ шӑршӑллӑ ҫӑвӗсене илсе
хӗрарӑмсем тупӑклӑх патне пынӑ. Вӗсемпе пӗрле
урӑх хӗрарӑмсем те пулнӑ. 2 Хайхисем ҫитнӗ те
тупӑклӑх умӗнчи чула йӑвантарса куҫарса хунине
асӑрханӑ. 3 Вара вӗсем тупӑклӑха кӗрсе пӑхнӑ,
анчах унта Иисус Хуҫамӑрӑн ӳчӗ пулман.

4 Хĕрарăмсем ним тума пĕлмесĕр тĕлĕнсе тăнă чух,
сасартăк вĕсен умне çап-çутă тумтирлĕ икĕ çын
пырса тăнă. 5 Хĕрарăмсем питĕ хăранипе çĕрелле
пăхса тăнă чух вĕсем: «Эсир мĕншĕн Чĕрĕскере
вилнисем хушшинче шыратăр? – тенĕ. 6 – Иисус
кунта çук, Вăл чĕрĕлсе тăнă! Астăватăр-и,
Галилейăра чухнех Вăл сире: 7 „Этем Ывăлне
çылăхлă çынсен аллине тытса парĕç, Ăна хĕрес
çумне пăталĕç, виççĕмĕш кунне Вăл чĕрĕлсе тăрĕ“,
– тесе каланăччĕ». 8 Вара хĕрарăмсем Иисус
сăмахĕсене астуса илнĕ. 9 Вĕсем, тупăклăх патĕнчен
таврăнсан, мĕн курнине пĕтĕмпех вун пĕр
апостола тата ыттисене пурне те каланă. Çавăн
çинчен каласа кăтартакансем – Мария Магдалина,
Иоанна, Иаков амăшĕ Мария; вĕсемпе пĕрле тата
урăх хĕрарăмсем те пулнă. 11 Анчах вĕсем каласа
пани апостолсене пустуй сăмах пек туйăннă, вĕсем
хĕрарăмсене ĕненмен.
12 Çапах та Петр тупăклăх патне чупса кайнă. Вăл
пĕшкĕнсе шалалла пăхнă та унта выртакан
пирсене çеç курнă. Вара мĕн пулнинчен тĕлĕнсе
каялла таврăннă.

*Еммауса каякан çул çинче*
(Мк. 16:12-13)

13 Çав кунах икĕ вĕренекенĕ Иерусалимран вун
пĕр çухрăмсенелле ларакан Еммаус ятлă яла кайнă.
14 Çул çинче вĕсем иртнĕ кунсенче мĕн пулни
çинчен калаçса пынă. 15 Çапла вĕсем пĕр-пĕринпе
сăмахласа, тавлашкаласа пынă чухне Иисус Хăй
вĕсем патне çывхарнă та юнашар утнă. 16 Анчах
вĕсен куçĕсене çавăн чухне улшу курмалла тунăран
вĕсем Иисуса паллайман. 17 «Эсир мĕн çинчен
калаçса пыратăр, мĕншĕн питĕ салхуллă?» – тесе
ыйтнă вĕсенчен Иисус. 18 Пĕри, Клеопа ятли, Ăна
çапла каланă: «Иерусалима килнĕ çынсенчен пĕр
Эсĕ çеç çак кунсенче унта мĕн пулса иртнине
пĕлместĕн пулĕ?» 19 «Мĕн пирки вара?» – тесе
ыйтнă Иисус. «Назаретри Иисус пирки, – хуравланă
лешсем. – Вăл пророкчĕ, Турăпа пĕтĕм халăх
умĕнче ĕçĕпе те, сăмахĕпе те хăватлăччĕ. 20 Пирĕн
аслă священниксемпе пуçлăхсем вара Ăна вĕлерме
суд тумашкăн тытса пачĕç те хĕрес çумне
пăталаттарчĕç. 21 Эпир вара Израиле хăтараканни
Çавă тесе ĕмĕтленеттĕмĕр. Çак ĕç пулнăранпа икĕ
кун та иртрĕ ĕнтĕ. 22 Çитменнине тата хамăр
хĕрарăмсенчен хăшĕ-пĕрисем пире тĕлĕнтерчĕç!
Паян ирхине ирех вĕсем тупăклăх патне кайнă,
23 анчах та Унăн ӳтне тупайман. Таврăнсан вĕсем
хăйсене ангелсем курăнни çинчен каласа пачĕç.
Ангелсем вĕсене Иисус чĕрех пулни çинчен
пĕлтернĕ. 24 Вара хамăр çынсем те тупăклăх патне
кайса пăхрĕç, хĕрарăмсем каласа пани тĕрĕсех
пулнă. Вĕсем унта Иисуса Хăйне курман». 25 «Эх,
тавçăрусăр та мăран чунлăскерсем! – тенĕ вĕсене
Иисус. – Пророксем малтанах каланине те ĕненме
пултараймастăр-çке. 26 Мухтавлăран та мухтавлă
пулма Христосăн çак асапа курмалла марччĕ-им
вара?» 27 Унтан Иисус вĕсене Моисейран пуçласа
пур пророксем те Çырнинче Хăйĕн пирки мĕн
каланине ăнлантарса панă.
28 Вĕсем хăйсем çитес ял патне çывхарнă. Иисус
татах малалла кайма пуçтарăннă пек тусан,
29 вĕренекенĕсем Ăна чарса: «Кун каçалана сулăнчĕ
ĕнтĕ, атя, пирĕнпе юл», – тенĕ. Вара Иисус вĕсемпе
пĕр пӳрте кĕнĕ. 30 Çиме ларсан Вăл çăкăр илсе
пилленĕ те вĕренекенĕсене хуçа-хуçа панă. 31 Тинех
вĕсен куçĕсем уçăлнă, тинех вĕсем Ăна палласа
илнĕ, анчах та Иисус вĕсен куçне курăнми пулнă.
32 Вĕренекенĕсем пĕр-пĕрне каланă: «Вăл çул çинче
пирĕнпе калаçса, Çырнине ăнлантарса пынă чух
пирĕн чĕресем хавхаланса çунмарĕç-и вара?»
33 Икĕ вĕренекенĕ çавăнтах тăнă та Иерусалима
каялла таврăннă. Унта вĕсем вун пĕр апостолпа
ыттисем пĕрле пухăннă çĕре пынă. 34 Вара
пухăннисем: «Хуçамăр чăннипех чĕрĕлсе тăнă! Вăл
Симона та курăннă», – тенĕ. 35 Икĕ вĕренекенĕ çул
çинче мĕн пулса иртнине тата çăкăр хуçа-хуçа
панинчен хăйсем Иисуса епле палласа илнине
каласа кăтартнă.

*Чĕрĕлсе тăнă Иисус вĕренекенĕсене курăнни*
(Мф. 28:16-20; Мк. 16:14-18; Ин. 20:19-23; Ĕç-хĕл. 1:6-8)

36 Çапла калаçса ларнă чух вĕсем Иисус хăйсем
хушшинче тăнине курах кайнă. «Канăçлăх пултăр
сире», – тенĕ Вăл. 37 Вĕренекенĕсем çав тери хăраса
ӳкнĕ, куçа темле сывлăш курăнать пулĕ тесе
шухăшланă. 38 «Эсир мĕншĕн аптăраса ӳкрĕр? –
тенĕ вĕсене Иисус. – Сирĕн пуçăра мĕншĕн
унашкал шухăшсем пырса кĕреççĕ? 39 Ман алăсене,
урасене пăхăр-ха: Ку – Эпĕ! Эсир Мана хыпаласа
пăхăр. Куратăр вĕт, Манăн ӳт те, шăмă та пур.
Сывлăшăн çавсем çук». 40 Çапла каласан вĕсене
Хăйĕн аллине, урине кăтартнă. 41 Вĕсем савăннипе
ĕненеймесĕр тĕлĕнсе тăнă чух Иисус вĕсенчен:
«Сирĕн кунта мĕн те пулин çимелли пур-и?» – тесе
ыйтнă. 42 Вĕренекенĕсем Ăна ăшаланă пулă тата
караслă пыл панă. 43 Иисус, илсе, вĕсем умĕнчех
çинĕ.
44 Унтан Вăл вĕренекенĕсене çапла каланă: «Ман
çинчен Моисей саккунĕнче, пророксен кĕнекинче,
псаломсенче çырни пурте пурнăçланмалла тесе
Эпĕ хăвăрпа пĕрле чухнех каланăччĕ. Çавсем ĕнтĕ
пĕтĕмпех пурнăçланчĕç». 45 Çавăн чух Вăл
вĕренекенĕсене Çырнинче мĕн каланине ăнланма
ăслăлăх панă, 46 вара вĕсене каланă: «Çырнинчи
пекех, Христосăн çапла асап курмаллаччĕ,
виççĕмĕш кунне вилĕмрен чĕрĕлсе тăмаллаччĕ.
47 Иерусалимран пуçласа мĕн пур халăхсене
ӳкĕнме, çылăх каçарттарма Ун ячĕпе ӳкĕтлесе
вĕрентмелле. 48 Эсир вара – çавна курса-илтсе
çирĕплетекенсем. 49 Мана Атте пама пулнине Эпĕ
сире те паратăп, анчах та эсир çӳлтен хăват
иличчен Иерусалимрах юлăр».

*Иисус Христос тӳпене çĕкленни*
(Мк. 16:19-20; Ĕç-хĕл. 1:9-11)

50 Унтан Иисус вĕренекенĕсене хуларан илсе
тухнă та Вифание çитиччен вĕсемпе пынă. Вара

аллисене çĕклесе вĕсене пилленĕ. 51 Пиллесе тăнă
чухнех Вăл, вĕсенчен уйăрăлса, тӳпене çĕклене
пуçланă. 52 Вĕренекенĕсем Ăна ӳксе пуççапнă та
питĕ савăнса Иерусалим хулине тавăрăннă. 53 Çав
кунран пуçласа вĕсем ялан Турă Çуртĕнче пулнă,
ялан Турра аслăласа мухтанă.

Аминь.

# Иоанн

## Сăмах ӳтленни

1 Чăн малтанах Сăмах пулнă, Сăмах Турăра
пулнă, Сăмах Хăй Турă пулнă. [2] Çав Сăмах чăн
малтанах Турăра пулнă. [3] Мĕн пурри пĕтĕмпех
Сăмах урлă пулнă. Мĕн пултарăнни нимĕн те Унсăр
пулса кайман. [4] Унра чĕрĕлĕх пулнă, çав чĕрĕлĕх
этемсемшĕн çутă пулнă. [5] Çутă тĕттĕмре çутатать,
тĕттĕм ăна хуплаймасть.
[6] Çĕр çинче Турă янă çын пулнă, вăл Иоанн ятлă
пулнă. [7] Хăй урлă Çутта пурте ĕненччĕр тесе вăл
Çутă çинчен каласа пĕлтерме килнĕ. [8] Вăл хăй çутă
пулман, ăна Çутă çинчен çирĕплетсе пĕлтермешкĕн
янă. [9] Çав Çутă – чăн-чăн: Вăл тĕнчене килекен
кашни çыннах çутатать. [10] Вăл Хăй пултарнă
тĕнчерех пулнă, анчах тĕнче Ăна пĕлеймен. [11] Вăл
хăйĕннисем патне килнĕ, хăйĕннисем те Ăна
йышăнман. [12] Хăйне йышăнакансене, Хăйне
ĕненекенсене Вăл Турă ачисем пулма ирĕк панă.
[13] Вĕсем юнпа-ӳтпе те мар, арçын кăмăлĕпе те мар,
çӳлтен, Турăран çуралаççĕ.
[14] Çапла Сăмах ӳтленсе, этем пулса, пирĕн
хушшăмăрта пурăнчĕ. Атте Турă тулли тивлетлĕ,
чăнлăхлă пĕртен-пĕр Ывăлне мухтава кăларчĕ.
Эпир Унăн мухтавне куртăмăр. [15] «Ман хыçран
Килекенни манран мала тухрĕ, Вăл манччен
пулнă тесе каланăччĕ эпĕ. Ку ĕнтĕ шăпах Çавă», –
хыттăн каласа çирĕплетнĕ Ун çинчен Иоанн.
[16] Унăн туллилĕхне пула эпир ырăлăх çине ырăлăх
илтĕмĕр. [17] Мĕншĕн тесен саккуна Моисей урлă
панă, ырăлăхпа чăнлăх вара Иисус Христос урлă
килнĕ. [18] Турра никам та нихçан та курман, Турă
çинчен пире Ашшĕпе пĕрлĕхлĕ, Атте Туррăмăрăн
пĕртен-пĕр Ывăлĕ пĕлтернĕ.

### *Шыва кĕртекен Иоанн каласа пĕлтерни*

(Мф. 3:1-12; Мк. 1:2-8; Лк. 3:15-17)

[19] Иудейсен ятлă-сумлă çыннисем Иоанн патне
Иерусалимри священниксемпе левитсене: «Кам
эсĕ?» – тесе ыйтма ярсан, Иоанн вĕсене: «Эпĕ
Христос мар», – тесе тӳрремĕнех çирĕплетсе
каланă. [21] «Эппин кам эсĕ? Илия-и?» – ыйтнă унран.
«Илия мар», – тавăрнă вăл. «Тен, эсĕ пророк?» –
ыйтнă лешсем. «Пророк та мар», – тенĕ Иоанн.
[22] «Апла кам-ха эсĕ? – татах ыйтнă унран. – Пирĕн
хамăра кунта яракансене хурав памалла. Хăвна эсĕ
кам тетĕн?» [23] «Эпĕ – пуш хирте: „Хуçамăр валли çул
тӳрлетĕр!“ – тесе чĕнекенĕн сасси, – тенĕ Иоанн. –
Ун çинчен Исаия пророках каланă». [24] Ыйтма
пынисем фарисейсем пулнă. [25] «Эсĕ Христос та мар,
Илия та мар, пророк та мар пулсан, мĕншĕн эппин
шыва кĕртетĕн?» – тесе ыйтнă унран вĕсем.
[26] Иоанн вĕсене хирĕç çапла каланă: «Эпĕ шывпа
тĕне кĕртетĕп. Анчах та сирĕн хушшăрта хăвăр та
пĕлмен Пĕри пур. [27] Ман хыçран Килекенни шăпах
Çавă, анчах Вăл манран малти. Эпĕ Унăн пушмакне
хывма та тивĕçлĕ мар». [28] Çакă Иоанн шыва кĕртнĕ
вырăнта, Иордан леш енчи Вифаварта, пулса
иртнĕ.

## Турă Путекки

[29] Тепĕр кунне Иоанн хăй патне Иисус пынине
курнă та каланă: «Акă тĕнче çылăхне Хăй çине
илекен Турă Путекки. [30] Ман хыçран Килекенни
манран мала тухрĕ, мĕншĕн тесен Вăл манччен
пулнă тенĕччĕ эпĕ. Ку ĕнтĕ шăпах Çавă. [31] Эпĕ хам
та Ăна пĕлместĕмччĕ. Çапах та, Израиль халăхĕ Ăна
пĕлтĕр тесе, шывпа тĕне кĕртме килтĕм». [32] Тата
Иоанн çапла çирĕплетсе каланă: «Кăвакарчăн пек
курăнса çӳлтен анакан Святой Сывлăш Ун çинче
тăнине куртăм эпĕ. [33] Эпĕ хам та Ăна пĕлместĕмччĕ.
Анчах та мана шывпа тĕне кĕртме Яраканĕ çапла
коларĕ: „Çӳлтен анакан Святой Сывлăш кам çинче
тăнине курăн, Çавă Святой Сывлăшпа тĕне
кĕртекенĕ пулĕ“. [34] Вăл Турă Ывăлĕ пулнине хам
куçăмпа хам курнăран çирĕплетсе пĕлтеретĕп», –
тенĕ Иоанн.

## Иисусăн малтанхи вĕренекенĕсем

[35] Тепĕр кунне Иоанн икĕ вĕренекенĕпе пĕрле
каллех çавăнта тăнă. [36] Вара иртсе пыракан Иисуса
курсан: «Акă Турă Путекки», – тенĕ. [37] Çак сăмахсене
илтсен икĕ вĕренекенĕ те Иисус хыççăн кайнă.
[38] Иисус çавăрăнса пăхнă та вĕсем Хăй хыçĕнчен
пынине асăрханă. «Сире мĕн кирлĕ?» – ыйтнă Вăл.
«Равви! (Равви тени Вĕрентекен тени пулать.) Ху
ăçта пурăннине каласам пире», – тенĕ лешсем.
[39] «Ман хыçăмран пырсан хăвăрах курăр», – тенĕ
Иисус. Вăхăт кăнтăрла иртни тăватă сехет тĕлнелле
пулнă. Вĕсем, Ун хыççăн пырса, Вăл ăçта пурăннине
курнă. Иисус патĕнче вара вĕсем кунĕпех пулнă.
[40] Иоанран Иисус çинчен илтсе Ун хыççăн
каяканĕсенчен пĕри Петр текен Симон шăллĕ
Андрей пулнă. [41] Вăл пирвай хăйĕн пиччĕшне
Симона тупса: «Эпир Мессияна (вăл Христос тени
пулать) куртăмăр», – тенĕ те [42] ăна Иисус патне илсе
пынă. Иисус ун çине пăхса илнĕ те каланă: «Эсĕ,

Иона ывăлĕ Симон , малашне Кифа ятлă пулăн».
Кифа тени Петр тениех, вăл Чул тенине пĕлтерет.

### Иисус Нафанаила тата Петра чĕнни

43 Тепĕр кунне Иисус Галилейăна кайма шут
тытнă. Вăл Филипа тĕл пулнă та: «Атя Ман
хыçăмран», – тенĕ. 44 Филипп вăл Андрейпа Петр
çуралнă Вифсаида хулинченех пулнă. 45 Филипп
вара Нафанаила тĕл пулса каланă: «Моисей
саккунĕнче тата пророксен сăмахĕнче Кам çинчен
каланă, эпир Çавна шыраса тупрăмăр. Вăл Иосиф
ывăлĕ, Назаретри Иисус иккен». 46 Анчах та
Нафанаил ăна çапла каланă: «Назаретран-и?
Назаретра мĕн те пулин ырри пулма пултарать-и
вара?» «Кайса пăх эппин», – тенĕ ăна Филипп. 47 Хăй
патне Нафанаил пынине курсан Иисус каланă: «Акă
чăн-чăн Израиль çынни, вăл ултав мĕнне те
пĕлмест». 48 «Эсĕ мана ăçтан паллатăн?» – тесе
ыйтнă Нафанаил. «Эпĕ сана Филипп чĕнниччен,
смоква йывăççи айĕнче тăнă чухнех куртăм», –
тавăрнă Иисус. 49 «Равви! Эсĕ – Турă Ывăлĕ, Эсĕ –
Израиль Патши», – тенĕ Нафанаил. 50 Иисус ăна
хирĕç çапла каланă: «„Эпĕ сана смоква йывăççи
айĕнче куртăм“, – тенипех эсĕ Мана ĕнентĕн. Эсĕ
унтан та ытларах курăн-ха». 51 Иисус ăна тата çапла
каланă: «Чăн-чăнах калатăп сире: паянтан тӳпе
уçăлнине, Турă ангелĕсем Этем Ывăлĕ патне
хăпарса аннине те курăр».

### Галилейăри Кана хулинчи туй

2 Тепĕр икĕ кунран Галилейăри Кана хулинче
туй пулнă. Унта Иисусăн Амăшĕ те пынă.
2 Иисуспа вĕренекенĕсене те çав туя чĕннĕ. 3 Хĕрлĕ
эрех çитменнине курса: «Вĕсен эрехĕ пĕтнĕ», – тенĕ
Амăшĕ Иисуса. 4 «Эй, Анне! Мана Эсĕ кун пирки
мĕншĕн калатăн? Манăн вăхăтăм çитеймен-ха», –
тенĕ хирĕç Иисус. 5 Амăшĕ тарçăсене: «Вăл сире
мĕн хушнине пĕтĕмпех тăвăр», – тенĕ. 6 Çавăнта
вунă витре кĕрекен ултă чул савăт ларнă. Вĕсемпе
иудейсем ĕçсе çиес умĕн тасалу йăлине тунă чух усă
курнă пулнă. 7 «Савăтсене шыв тултарăр-ха», – тенĕ
тарçăсене Иисус. Лешсем вара шывне туллиех
тултарнă. 8 «Халĕ ĕнтĕ ăсса илĕр те туй пуçне леçсе
парăр», – хушнă Иисус. Лешсем леçсе панă. 9 Туй
пуçĕ шывран пулнă хĕрлĕ эрехе астивсе пăхнă. Вăл
çав эрехе ăçтан илнине пĕлмен, ăна шыв ăсакан
тарçăсем кăна пĕлнĕ. Туй пуçĕ вара кĕрĕве хăй
патне чĕнсе илнĕ те 10 çапла каланă: «Пурте
лайăхрах хĕрлĕ эрехе малтан параççĕ. Кайран, ĕçсе
çитсен, япăхраххине параççĕ. Эсĕ вара лайăх
эрехне халиччен кăлармасăр тăнă». 11 Çапла вара,
Галилейăри Кана хулинче хăватлă ĕçсем тума
пуçласа, Иисус Хăйĕн чап-мухтавне кăтартнă;
вĕренекенĕсем Ăна ĕненнĕ. 12 Çавăн хыççăн Вăл
Хăй те, Амăшĕ те, тăванĕсем те, вĕренекенĕсем те
Капернаума кайнă, унта вĕсем темиçе кун çеç
пурăннă.

### *Иисус Турă Çуртĕнчи сутуçăсене хăваласа кăларни*

(Мф. 21:12-13; Мк. 11:15-17; Лк. 19:45-46)

13 Иудейсен пасха уявĕ çитеспе Иисус Иерусалима
пынă. 14 Вара Вăл Турă Çуртĕнче вăкăр, сурăх,
кăвакарчăн сутнине тата укçа улăштаракансем
ларнине асăрханă. 15 Иисус кантраран пушă тунă та
вĕсене пурне те вăкăрĕ-сурăхĕ мĕнĕпех Турă
Çуртĕнчен хăваласа кăларнă. Вăл укçа
улăштаракансен укçисене сапаласа янă, сĕтелĕсене
тӳнтерсе тухнă. 16 Вара кăвакарчăн сутакансене
каланă: «Кайăк-кĕшĕк таврашне те илсе кайăр
кунтан! Аттем çуртне суту-илӳ çурчĕ тунă ан
пултăр!» 17 Çавăн чухне Унăн вĕренекенĕсем
«Турăçăм, Санăн çуртушăн çунни вут пек
кĕллентерет Мана» тесе Çырнинчех каланине аса
илнĕ. 18 Иудейсен ятлă-сумлă çыннисем вара:
«Çапла тума тивĕçӳ пуррине Эсĕ пире мĕнле паллă
кăтартса ĕнентерĕн?» – тенĕ. 19 «Çак Турă Çуртне
пăсăр, Эпĕ вара ăна виçĕ кунран çĕнĕрен туса
лартăп», – хуравланă Иисус. 20 «Ку Турă Çуртне
хĕрĕх ултă çул хушши тунă, Эсĕ ăна виçĕ кунрах
туса лартасшăн-и?» – тенĕ çакна илтсен иудейсем.
21 Турă Çурчĕ тесе Иисус Хăйĕн ӳт-пĕвне каланă
пулнă. 22 Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăрсан,
вĕренекенĕсем Иисусăн çак сăмахĕсене аса илнĕ.
Вара Çырнинче каланине те, Иисус каланă
сăмахсене те ĕненнĕ.
23 Иерусалимра пасха уявĕнче пулнă чухне Иисус
тĕрлĕ хăватсем кăтартнă. Çавна курсан чылайăшĕ
Ăна ĕненме пуçланă. 24 Анчах та вĕсем Хăйне çапла
çирĕп ĕненсе пăрахнине Иисус шанман, мĕншĕн
тесен Вăл çынсене пурне те пĕлсе тăнă. 25 Ăна çын
çинчен кăтартса пани кирлĕ пулман, Вăл Хăех
çынна витĕр курса тăнă.

### Иисус Никодимпа калаçни

3 Фарисейсем хушшинче иудейсен пĕр пуçлăхĕ,
Никодим ятлăскер, пулнă. 2 Никодим
пĕррехинче çĕрле Иисус патне пынă та Ăна çапла
каланă: «Равви! Эсĕ Турă янă Вĕрентекен пулнине
эпир пĕлетпĕр. Турă пулăшмасан Эсĕ кăтартакан
хăватсене тума никам та пултараяс çук». 3 «Чăн-
чăнах калатăп сана, – тенĕ ăна хирĕç Иисус. –
Çӳлтен çуралманни Турă Патшалăхне кураймĕ».
4 «Ватăлнă çын епле тата çуралма пултарĕ? –
тĕлĕнсе ыйтнă Никодим. – Вăл тепĕр хут амăш
варне кĕрсе çуралма та пултарать-им?» 5 «Чăн-
чăнах калатăп сана: шывран тата Турă
Сывлăшĕнчен çуралманни Турă Патшалăхне
кĕреймĕ, – хуравланă Иисус. 6 – Çын ӳт-пĕвĕнчен ӳт-
пӳ кăна çуралать, чун-чĕм вара Турă Сывлăшĕнчен
çуралать. 7 „Сирĕн çӳлтен çуралмалла“ тенĕ
сăмахăмран эсĕ ан тĕлĕн. 8 Çил ăçта вĕрес тет,
çавăнта вĕрет. Эсĕ çил кашланине илтетĕн пулин
те, вăл ăçтан тухнине, ăçта кайнине пĕлместĕн.
Турă Сывлăшĕнчен çуралнă кашни çынпах çапла
пулать». 9 «Мĕнле майпа пулма пултарать-ха вăл?»
– ыйтнă Никодим. 10 Иисус ăна хирĕç тавăрса

каланӑ: «Эсӗ – Израиль халӑхне вӗрентекен – ҫавна
та пӗлместӗн-и? 11 Чӑн-чӑнах калатӑп сана: Эпир
Хамӑр мӗн пӗлнине калатпӑр, мӗн курнине
ҫирӗплетсе пӗлтеретпӗр. Эсир ҫапах та Эпир
ҫирӗплетсе пӗлтернине йышӑнмастӑр. 12 Эпӗ сире
ҫӗр ҫинчи пирки каланине ӗненместӗр пулсан
ҫӳлти пирки каланине епле ӗненӗр? 13 Тӳперен
аннӑ ҫӳлти Этем Ывӑлӗсӗр пуҫне пӗлӗт ҫине никам
та хӑпарман-ха. 14 Ӗненекенӗсем пӗри те ан пӗтчӗр
тесе, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пулччӑр тесе, Моисей пуш
хирте ҫӗлене ҫӗкленӗ евӗрлех, Этем Ывӑлӗн те
ҫӗкленмелле.
16 Тӗнчене питӗ юратнӑран Турӑ Хӑйӗн пӗртен-пӗр
Тӑван Ывӑлне панӑ. Ҫакна Вӑл ӗненекенӗсем пӗри
те ан пӗтчӗр тесе, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пулччӑр тесе
тунӑ. 17 Хӑйӗн Ывӑлне Турӑ ҫак тӗнчене суд тума
яман, Ун урлӑ тӗнче ҫӑлӑнтӑр тесе янӑ. 18 Турӑ
Ывӑлне ӗненекен айӑплӑ пулмӗ. Ӑна ӗненменни
вара Туррӑн пӗртен-пӗр Тӑван Ывӑлне ӗненменрен
айӑпа юлнӑ та ӗнтӗ. 19 Айӑпӗ вара ҫакӑ: тӗнчене
ҫутӑ килчӗ, анчах ҫынсем, ӗҫӗсем усал пулнӑран,
тӗттӗме ҫутӑран ытла юратрӗҫ. 20 Усал ӗҫ тӑвакан
кирек кам та ҫутта юратмасть. Хӑйӗн ӗҫӗсем
палӑрасран вӑл ҫутӑ патне пымасть, мӗншӗн тесен
унӑн ӗҫӗсем усал. 21 Тӗрӗс пурӑнакан вара, ӗҫӗсем
палӑрччӑр тесе, ҫутталла туртӑнать, мӗншӗн тесен
унӑн ӗҫӗсем Турра юрӑхлӑ».

### Иисус тата Шыва кӗртекен Иоанн

22 Ҫавӑн хыҫҫӑн Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсемпе
Иудея ҫӗрне пынӑ. Унта Вӑл вӗренекенӗсемпе
пӗрле пӗр хушӑ ҫынсене шыва кӗртсе пурӑннӑ.
23 Иоанн та Салим ҫывӑхӗнчи Енонра шыва кӗртнӗ,
мӗншӗн тесен унта шыв ҫителӗклех пулнӑ. Ҫынсем
ун патне пыра-пыра шыва кӗнӗ. 24 Вӑл вӑхӑтра
Иоана тӗрмене хупман пулнӑ-ха. 25 Ҫавӑн чухне
Иоанӑн вӗренекенӗсемпе иудейсем хушшинче
тасалу йӑли пирки тавлашу сиксе тухнӑ.
26 Вӗренекенӗсем вара Иоанн патне пынӑ та
каланӑ: «Равви! Иордан леш енче санпа пӗрле
Пӗри пулнӑччӗ, эсӗ Ун ҫинчен ху та ҫирӗплетсе
пӗлтернӗччӗ. Акӑ халӗ Вӑл Хӑй шыва кӗрте
пуҫларӗ, пурте Ун патне ҫӳреҫҫӗ». 27 «Ҫӳлти Турӑ
ӑнӑҫу памасӑр ҫын нимӗн те ӑнӑҫтарма
пултараймасть, – тенӗ вӗсене Иоанн. 28 – Эпӗ
Христос мар, мана Ун умӗнчен янӑ тесе каланӑччӗ
эпӗ сире. Ҫав сӑмахсене эсир хӑвӑр та ҫирӗплетме
пултаратӑр. 29 Хӗр ҫураҫнӑ качча ҫеҫ кӗрӳ тееҫҫӗ.
Каччӑн сассине илтекен тусӗ вара савӑнса-
хӗпӗртесе тӑма ҫеҫ пултарать. Ман чӗрем ҫав
савӑнӑҫпа тулчӗ ӗнтӗ. 30 Унӑн асла тухмалла, манӑн
кӗҫӗне юлмалла».

### Ҫӳлтен Килекенни

31 «Ҫӳлтен Килекенни вара пуринчен те аслӑ. Ҫӗр
ҫинче ҫурални ҫӗр ҫинчи пурӑнӑҫпах пурӑнать, ҫӗр
ҫинчиллех калаҫать. Ҫӳлтен Килекенни пуринчен
те аслӑ. 32 Вӑл Хӑй курни-илтнине пӗлтерет, анчах
та Вӑл ҫирӗплетсе пӗлтернине никам та
йышӑнмасть. 33 Вӑл пӗлтернине йышӑнакан ҫапла
туса Турӑ чӑн-чӑннине ӗнентерет. 34 Турӑ Яни Турӑ
сӑмахӗпе калаҫать, мӗншӗн тесен Турӑ Хӑйӗн
Сывлӑшне виҫесӗр парать. 35 Ашшӗ Ывӑлне
юратать, Вӑл пӗтӗмпех Унӑн аллине панӑ.
36 Ывӑлне ӗненекен ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ. Турӑ
Ывӑлне ӗненмен ҫын пурӑнӑҫ кураяс ҫук, ун ҫинче
Турӑ ҫилли тӑрать».

### Иисуспа Самари хӗрарӑмӗ

4 Иисусӑн вӗренекенӗсем йышлансах пынӑ, Вӑл
Иоанран та ытларах шыва кӗртет текен хыпар
фарисейсем патне ҫитнӗ. 2 Тӗрӗссипе вара, Иисус
Хӑй шыва кӗртмен, вӗренекенӗсем кӗртнӗ.
3 Фарисейсем Хӑйӗн ҫинчен илтнине пӗлсен Иисус
каллех Иудейӑран Галилейӑна кайнӑ. 4 Унӑн
Самари ҫӗрӗпе иртмелле пулнӑ. 5 Ҫапла вара Вӑл
Самарири Сихарь ятлӑ хулана ҫитнӗ. Ҫав хула
Иаков хӑйӗн ывӑлне Иосифа панӑ анапа юнашарах
вырнаҫнӑ. 6 Унта Иаков ҫӑлӗ те пулнӑ. Ҫул ҫинче
ывӑннӑ Иисус ҫав ҫӑл патне канма ларнӑ. Кӑнтӑр
вӑхӑчӗ ҫитсе пынӑ.
7 Пӗр Самари хӗрарӑмӗ шыв ӑсма пынӑ. «Шыв
ӗҫтерсемччӗ», – тенӗ ӑна Иисус. 8 Ҫав вӑхӑтра Унӑн
вӗренекенӗсем хулара пулнӑ, вӗсем апат-ҫимӗҫ
илме кайнӑ пулнӑ. 9 Самари хӗрарӑмӗ Ӑна: «Епле-ха
Эсӗ, Иудея ҫынни, манран, Самари хӗрарӑмӗнчен,
ӗҫме ыйтатӑн?» – тесе каланӑ. Иудея ҫыннисемпе
Самари ҫыннисем пӗр-пӗринпе хутшӑнса
пурӑнман пулнӑ. 10 Иисус ӑна хирӗҫ каланӑ: «Турӑ
мӗн пама пултарнине пӗлес пулсан, „шыв
ӗҫтерсемччӗ“ тесе калаканӗ Камне пӗлес пулсан,
эсӗ ху Унран ыйтнӑ пулӑттӑн. Вара Вӑл сана
чӗрӗлӗх шывӗ парӗччӗ». 11 «Ырӑ Ҫыннӑм! – тенӗ
Ӑна хӗрарӑм. – Санӑн ӑсмалли те ҫук-ҫке, ҫӑлӗ вара
тарӑн. Ӑҫтан-ха апла Санӑн чӗрӗлӗх шывӗ пултӑр?
12 Пире ку ҫӑла алтса парса хӑварнӑ Иаков мӑн
асаттерен те аслӑрах-им вара Эсӗ? Вӑл хӑй те,
ачисем те ҫак ҫӑлтанах ӗҫсе пурӑннӑ, выльӑх-
чӗрлӗхне те ҫакӑнтах шӑварнӑ». 13 Иисус ӑна хирӗҫ
ҫапла каланӑ: «Кам ҫак шыва ӗҫет, тепӗртакран
унӑн каллех ӗҫесси килет. 14 Кам та кам Эпӗ панӑ
шыва ӗҫет, унӑн ӗмӗрне те ӑшӗ хыпмӗ. Эпӗ
паракан шыв унӑн чунӗнче ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа
юхакан ҫӑлкуҫ пулса тӑрӗ». 15 «Ырӑ Ҫыннӑм! – тенӗ
Ӑна хӗрарӑм. – Ҫав шыва мана ӗҫтерсемччӗ, манӑн
тек нихҫан та ӑшӑм ан хыптӑрччӗ, ҫакӑнта шыв
ӑсма та килмелле ан пултӑрччӗ». 16 «Кайса
упӑшкуна чӗн те кунта кил», – тенӗ ӑна Иисус.
17 «Манӑн упӑшкам ҫук», – тавӑрнӑ хирӗҫ хӗрарӑм.
«Упӑшкам ҫук тесе эсӗ тӗрӗсех каларӑн, – тенӗ ӑна
Иисус. 18 – Пилӗк хут качча кайнӑ пулин те, халӗ
пӗрле пурӑнаканни санӑн упӑшку мар. Эсӗ ҫакна
тӗрӗсех каларӑн». 19 «Хуҫамӑр! – тенӗ хӗрарӑм. –
Ӗнтӗ пӗлетӗп: Эсӗ – пророк. 20 Пирӗн мӑн асаттесем
Турра ҫак ту ҫинче пуҫҫапнӑ, эсир вара

пусçапмалли вырăн Иерусалимра тетĕр». 21 Иисус
ăна çапла каланă: «Ĕнен Мана, вăхăт çитсе пырать
ĕнтĕ. Ун чухне те эсир Атте Турра пуççапăр, анчах
çак ту çинче те мар, Иерусалимра та мар. 22 Эсир,
Самари çыннисем, мĕне пуççапнине хăвăр та
пĕлместĕр. Эпир вара хамăр мĕне пуççапнине
пĕлетпĕр, мĕншĕн тесен çăлăнăç иудейсенчен
килмелле. 23 Чăн-чăн пуççапакансем Аттене чун-
чĕмпе, таса кăмăлпа пуççапмалли вăхăт çитсе
пырать. Çав вăхăт çитрĕ те ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Атте
Хăйне çавнашкал пуççапакансене шырать. 24 Турă
Вăл – Сывлăш. Çавăнпа пуççапакансен те Ăна чун-
чĕмпе, таса кăмăлпа пуççапмалла». 25 Хĕрарăм Ăна:
«Мессия, тепĕр майлă каласан Христос, килессине,
килсен пире йăлтах каласа пĕлтерессине пĕлетĕп-
ха эпĕ», – тенĕ. 26 «Вăл Эпĕ, санпа Калаçаканни», –
тенĕ ăна Иисус.

27 Çавăн чухне вĕренекенĕсем тавăрăннă та Иисус
Самари хĕрарăмĕпе калаçса тăнинчен тĕлĕннĕ.
Çапах та вĕсенчен пĕри те «Эсĕ хĕрарăмран мĕн
ыйтрăн?» тесе те, «Мĕн çинчен калаçрăр?» тесе те
ыйтман. 28 Шыв савăтне лартса хăварсах хĕрарăм
хулана кайнă та çынсене çапла каланă: 29 «Пĕр Çын
манăн пурăнăçăм çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа
пачĕ, кайса пăхăр-ха, Христос мар-и Вăл?» 30 Вара
çынсем хуларан тухса Иисус патне кайнă.

31 Çав вăхăтра вĕренекенĕсем Ăна: «Равви!
Çисемччĕ», – тесе тархасланă. 32 Анчах та Иисус
вĕсене хирĕç каланă: «Манăн эсир пĕлмен апат-
çимĕç пур». 33 Вĕренекенĕсем хăйсем хушшинче:
«Кам та пулин Ăна çимелли илсе килсе паман-и?» –
тесе калаçкаланă. 34 Иисус вĕсене каланă: «Манăн
апат-çимĕçĕм – Хама кунта Яраканăн ирĕкне
пурнăçласси, Унăн ĕçне туса пĕтересси. 35 Эсир
марччĕ-и-ха: „Тепĕр тăватă уйăхран тырă вырмалла
пулать“, – тесе калаканнисем? Эпĕ сире калатăп:
куçăрсене уçса тырă пуссине сăнăр-ха: тырри пиçсе
çитнĕ, вырмалла пулнă ĕнтĕ. 36 Выраканĕ, хăйĕн
пайтине илсе, ĕмĕрлĕх пурăнăç валли тырă-пулă
пуçтарать. Çапла вара акаканĕпе выраканĕ пĕрле
савăнĕç. 37 Мĕншĕн тесен кунта шăпах „пĕри акать,
тепри вырать“ текен каларăш вырăнлă. 38 Эпĕ сире
хăвăр акман тырра вырма яратăп. Çав уй-хирте
пĕрисем ĕçлерĕç, эсир вара вĕсемпе пĕрле
вырнипех пая кĕретĕр».

39 Хĕрарăм Ун пирки «манăн пурăнăçăм çинчен
тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ» тесе çирĕплетнине
илтсен çав хулари Самари çыннисем нумайăшĕ
Иисуса ĕненме пуçланă. 40 Çавăнпа Самари
çыннисем, Иисус патне пырсан, Ăна пĕр вăхăт
хăйсем патĕнче юлма ыйтнă. Вăл вара унта икĕ кун
пурăннă. 41 Унăн Хăйĕн сăмахĕсене илтсен
ĕненекенсем татах нумайланнă. 42 Вара вĕсем çав
хĕрарăма каланă: «Эпир ĕнтĕ сан сăмаху тăрăх кăна
ĕненместпĕр. Вăл чăнах тĕнчене Çăлакан, Христос
иккенне хамăр илтсе пĕлтĕмĕр».

*Пуçлăх ывăлне сыватни*

(Мф. 8:5-13; Лк. 7:1-10)

43 Пророка хăйĕн тăван çĕр-шывĕнче
хисеплемеççĕ тесе Иисус Хăех каланă пулнă.
Çавăнпа та, икĕ кун иртсен, Иисус Галилейăна
кайнă. 45 Галилейăна пырсан, унти çынсем Ăна
хапăлласах йышăннă. Мĕншĕн тесен Иерусалимри
пасха уявĕнче Иисус кăтартнă хăватсене вĕсем
куçăнах курнă пулнă.

46 Çапла вара Вăл каллех Галилейăри Кана хулине,
Хăй шывран хĕрлĕ эрех тунă çĕре пынă.
Капернаумра патшан пĕр улпучĕ пурăннă, унăн
ывăлĕ чирлĕ выртнă. 47 Иисус Иудейăран
Галилейăна килни çинчен илтнĕ улпут Ун патне
пынă. Вăл Иисуса хăйĕн вилесле выртакан ывăлне
кайса сыватма тархасланă. 48 «Тĕрлĕ паллăсем,
хăватсем курмасăр эсир ĕненекен марччĕ-çке», –
тенĕ çавăн чухне Иисус. 49 Пуçлăх Ăна каланă:
«Хуçамăр! Ывăлăм вилсе кайиччен атя-ха пирĕн
пата каяр». 50 «Санăн ывăлу сывă ĕнтĕ, каях», – тенĕ
ăна Иисус. Унăн сăмахĕсене ĕненнĕ çын кайнă
вара. 51 Çул çинче ăна тарçисем тĕл пулнă. «Санăн
ывăлу сывă ĕнтĕ», – тенĕ вĕсем. 52 Вăл тарçисенчен
ывăлĕ миçе сехетсенче самайланни çинчен ыйтнă.
«Ĕнер, кăнтăрла иртни пĕр сехет тĕлнелле унăн сив
чирĕ иртсе кайрĕ», – тенĕ лешсем. 53 Вара ачан
ашшĕ ку шăпах Иисус хăйне «Санăн ывăлу сывă
ĕнтĕ» тенĕ сехетре пулса иртнине ăнланса илнĕ.
Çавăн хыççăн пуçлăх та, унăн кил-йышĕсем те
пурте Иисуса ĕненме пуçланă. 54 Çак иккĕмĕш
тĕлĕнмелле ĕçе Иисус Иудейăран Галилейăна
тавăрăнсан тунă.

### Шыва кĕмелли вырăнта сыватни

5 Нумаях та вăхăт иртмен, иудейсен уявĕ çитнĕ.
Вара Иисус Иерусалима пынă. 2 Иерусалимра,
Сурăх Хапхи патĕнче, шыва кĕме ятарласа тунă
вырăн пур, еврейла ăна Вифезда теççĕ. Ун йĕри-
тавра пилĕк лупас ларнă. 3 Çав лупассем айĕнче
питĕ нумай чирлĕ çын выртнă. Суккăрсем,
уксахсем, паралич çапнисем шыв хумхана пуçласса
кĕтнĕ. 4 Мĕншĕн тесен Хуçа Туррăмăрăн ангелĕ
вăхăтран вăхăта çавăнта анса шыва пăлхатнă. Кам
та кам хумханса илнĕ шыва чи малтан кĕме
ĕлкĕрнĕ, çав кирек епле чиртен те сывалнă . 5 Унта
вăтăр сакăр çул хушши чирпе асапланакан пĕр çын
пулнă. 6 Иисус ăна курсан, вăл чылай хушă
чирленине пĕлсе, выртакан çынран: «Санăн
сывалас килет-и?» – тесе ыйтнă. 7 «Эй, Хуçамăр, –
тенĕ Ăна чирлĕскер, – сываласчĕ те, анчах та хум
çĕкленсен мана шыва кĕме пулăшакан çук-çке. Эпĕ
шыв хĕррине çитиччен ялан кам та пулин маларах
кĕрсе ĕлкĕрет». 8 Иисус ăна каланă: «Тăр, сарнă
вырăнна ил те утса çӳре». 9 Лешĕ çав самантрах
сывалнă та вырăнне илсе утма пуçланă. Çак ĕç
шăмат кун пулнă. 10 Çавăнпа иудейсен ятлă-сумлă
çыннисем сывалнăскере каланă: «Паян шăмат кун,
санăн вырăнна çĕклесе кайма юрамасть». 11 «Сарнă

вырӑнна ил те тӑрса ут тесе мана Сыватакан
хушрĕ», – хуравланă вĕсене çак çын. 12 «Сарнă
вырӑнна ил те тӑрса ут текенни кам вара Вăл?» –
ыйтнă унран. 13 Сывалнă çынни Вăл кам пулнине те
пĕлмен, мĕншĕн тесен Иисус çавăнтах халăх
хушшине кĕрсе çухалнă пулнă. 14 Кайран Иисус ăна
Турă Çуртĕнче шыраса тупнă та каланă: «Акă ĕнтĕ
эсĕ сывалтăн. Асту, тата япăхраххи ан пултăр тесен,
çылăха урăх ан кĕр». 15 Çав çын вара иудейсен ятлă-
сумлă çыннисем патне кайнă та хăйне Сыватаканĕ
Иисус пулнине пĕлтернĕ. 16 Çавнашкал ĕçсене
шăмат кун тунăшăн хайхи иудейсем Иисуса
хĕсĕрлеме пуçланă, вĕлерме май шыранă. 17 Анчах
та Иисус вĕсене çапла каланă: «Манăн Аттем Хăйĕн
ĕçне яланах тăвать, Эпĕ те тăватăп». 18 Çавăнпа та
ятлă-сумлисем Ăна шăмат куна хисеплеменшĕн
кăна мар, Турра Манăн Аттем теме хăйнăшăн,
çапла каласа Хăйне Турăпа танах хунăшăн вĕлерес
тесе тата çирĕпрех шут тытнă.

### Ывăлне панă ирĕк

19 «Чăн-чăнах калатăп сире, – тавăрнă Иисус. –
Ашшĕ мĕн тунине курмасан Ывăлĕ хăй тĕллĕн
нимĕн те тăваймасть. Ашшĕ мĕн тăвать, Ывăлĕ те
çавнах тăвать. 20 Ывăлне юратнăран Ашшĕ Хăй мĕн
тунине йăлтах Ăна кăтартать. Вăл Ăна тата
пысăкрах ĕçсем кăтартĕ-ха, вара эсир тĕлĕнсех
кайăр. 21 Ашшĕ вилнисене чĕртсе пурăнăç панă
пекех, Ывăлĕ те кама пурăнăç парас тет, çавна
парать. 22 Ашшĕ никама та суд тумасть. Ашшĕне
хисепленĕ пекех, Ывăлне те хисеплеччĕр тесе суд
тăвассине Вăл пĕтĕмпех Ывăлне шанса панă. Кам
Ывăлне хисеплемест, çав Ăна яракан Ашшĕне те
хисеплемест. 24 Чăн-чăнах калатăп сире: Ман
сăмаха итлекен, Мана кунта Яракана ĕненекен
ĕмĕрлĕх пурăнăçлă. Вăл вилĕмрен чĕрĕлĕхе куçать,
унăн Турă судне те пымалла мар. 25 Чăн-чăнах
калатăп сире: вилнĕ çынсем Турă Ывăлĕн сассине
илтес, илтсенех чĕрĕлсе тăрас вăхăт çитсе пырать.
Вăл çитрĕ те ĕнтĕ. 26 Ашшĕ Хăй чĕрĕлĕхлĕ пулнă
пекех, Ывăлне те чĕрĕлĕхлĕ пулма панă. 27 Этем
Ывăлĕ пулнăран Ăна Турă суд тума та ирĕк панă.
28 Çакăнтан ан тĕлĕнĕр: тупăкрисем пурте Турă
Ывăлĕн сассине илтес вăхăт çитсе пырать ĕнтĕ.
29 Ырă тунисем ĕмĕрлĕх пурăнма чĕрĕлĕç, усал
тунисем айăплав илме чĕрĕлĕç. 30 Мĕн тăвасси Ман
ирĕк мар, Аттене итленĕрен çапла суд тăватăп. Хам
ирĕкĕме мар, Хама яракан ирĕкне тума
тăрăшнăран Ман судăм тĕрĕс».

### Ывăлĕ çинчен каласа çирĕплетни

31 «Эпĕ Хам пирки Хамах пĕлтеретĕп пулсан, Эпĕ
çирĕплетсе пĕлтерни тĕрĕс пулмĕччĕ. 32 Ман пирки
Тепри те çирĕплетсе пĕлтерет. Вăл Ман çинчен
пĕлтерни чăн пулнине Эпĕ пĕлетĕп. 33 Эсир Иоанн
патне çынсем ятăр. Вăл çирĕплетни чăн-чăн.
34 Тепĕр тесен, Ман пирки çын каласа çирĕплетни
Мана кирлĕ те мар. Çакна Эпĕ сире çăлас тесе кăна
калатăп. 35 Иоанн вăл çунса çутă паракан
çутаткăçчĕ, эсир вара ун çутинче кăшт кăна савăнса
юласшăн пултăр. 36 Ăна Ашшĕ кунта янă тесе Ман
çинчен Иоанн пĕлтернисĕр пуçне тата вăйлăрах
кăтартса паракан пур. Вăл – Эпĕ тăвакан ĕçсем,
вĕсене Эпĕ Аттем ирĕкне пăхăнса тăватăп. 37 Мана
кунта яракан Аттем Хăй те Ман çинчен çирĕплетсе
пĕлтернĕ. Эсир вара Унăн сассине нихăçан та
илтмен, Унăн сăнне те курман. 38 Сирĕн чĕрĕрте
Унăн сăмахĕ валли вырăн тупăнмарĕ, мĕншĕн
тесен Вăл Янăскере ĕненместĕр. 39 Эсир, Çырнине
тишкерсе вуласа, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пуласса
шанатăр, Çырни вара хăех Ман çинчен пĕлтерет.
40 Апла пулин те эсир чĕрĕлĕх илме Ман патăма
килес теместĕр.
41 Çын мухтани Мана ним тума та кирлĕ мар.
42 Анчах Эпĕ сире пĕлетĕп: чунăрсенче Турра
юратни çук. 43 Эпĕ Аттем ячĕпе килтĕм, эсир Мана
йышăнмастăр. Кам та пулин хăй ячĕпе килет те –
эсир ăна йышăнатăр. 44 Пĕртен-пĕр Турă мухтавне
шырас вырăнне эсир пĕр-пĕрне мухтаса пурăнатăр
пулсан ăçтан-ха Мана ĕненме пултарăр? 45 Çапах та
Вăл пире Ашшĕ умĕнче айăплĕ тесе ан шухăшлăр.
Сире айăплама хăвăр шанакан Моисей пур.
46 Енчен те эсир Моисея ĕненес пулсан, Мана та
ĕненĕттĕр, мĕншĕн тесен вăл Ман çинчен çырнă.
47 Вăл çырнине те ĕненместĕр пулсан, ăçтан-ха Ман
сăмахăмсене ĕненĕр?»

### *Пилĕк пин çынна тăрантарни*

(Мф. 14:13-21; Мк. 6:30-44; Лк. 9:10-17)

6 Кайран Иисус Галилея тинĕсĕн тепĕр енне
каçнă. Ку тинĕсе тата Тивериада тинĕсĕ тесе те
калаççĕ. 2 Вăл чирлисене сыватса хăват тунине
курнă халăх Ун хыçĕнчен йышлăн пынă. 3 Иисус ту
çине хăпарнă та унта Хăйĕн вĕренекенĕсемпе
пĕрле ларнă. 4 Иудейсен пасха уявĕ çывхарса килнĕ
пулнă. 5 Иисус пуçне çĕклесе пăхнă та Хăй патне
темĕн чухлĕ халăх пынине курнă. Вара Филипа
çапла каланă: «Кун чухлĕ халăха тăрантармалăх
çăкăр ăçтан сутăн илмелле-ха пирĕн?» 6 Хăй мĕн
тăвассине пĕлнĕ пулин те, çакна Вăл Филипа
тĕрĕслесе пăхас тесе каланă. 7 «Кунта ик çĕр
динарийлĕх çăкăр туянсан та çитес çук. Кашнине
пĕрер татăк та лекеймĕ», – тенĕ Филипп. 8 Иисусăн
пĕр вĕренекенĕ, Петр текен Симонăн шăллĕ
Андрей, Ăна çапла каланă: 9 «Кунта пĕр ачан пилĕк
урпа çăкăрĕпе икĕ пĕчĕк пулă пур. Анчах çакăн
чухлĕ халăха вăл ăçтан çиттĕр?» 10 «Халăха ларма
хушăр», – тенĕ Иисус. Çапла вара пилĕк пин çынна
яхăн ларса тухнă, вырăнĕ унта çеремлĕ пулнă.
11 Иисус хайхи çăкăрсене илсе Турра тав тунă та
вĕренекенĕсене тыттарнă, лешсем ларакан халăха
валеçсе панă. Пулла та çавнашкалах валеçнĕ. Кама
мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлех илнĕ. 12 Пурте çисе
тăрансан Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене каланă:
«Юлнă татăксене пуçтарăр, нимĕн те сая ан
кайтăр». 13 Лешсем вара пилĕк урпа çăкăрне çинĕ

хыççăн юлнă татăксене пуçтарнă. Пурĕ вун икĕ
кунтăк тултарнă. 14 «Ку чăнах та тĕнчене килмелли
Çав Пророк!» – тенĕ çавăн чухне Иисус тунă хăвата
курнисем.
15 Çынсем Хăйне систермесĕрех тытса патшана
лартассине пĕлсен Иисус каллех ту çине пĕччене
кайнă.

### *Иисус шыв çийĕпе утни*
(Мф. 14:22-27; Мк. 6:45-52)

16 Каç пулсан Унăн вĕренекенĕсем тинĕс хĕррине
аннă. 17 Тĕттĕмленнĕ пулин те, Иисус çаплах пыман.
Вара вĕсем, кимĕ çине ларса, тинĕс тепĕр енчи
Капернаума ише пуçланă. 18 Çил хытă вĕрнипе
тинĕс вăйлăн хумханма тытăннă. 19 Пĕр пилĕк-ултă
çухрăм ишсен вĕсем тинĕс çийĕпе утса кимĕ патне
çывхаракан Иисуса курнă та хăраса кайнă. 20 «Ан
хăрăр, ку – Эпĕ», – тенĕ вĕсене Иисус. 21 Вĕсем Ăна
кимĕ çине лартасшăн пулнă, анчах пăхаççĕ те
кураççĕ: кимĕ хăйсем çитес çырана çитсе те тăнă
иккен.

## Иисус Христос – пурăнăç çăкăрĕ

22 Тинĕс леш енче юлнă çынсем тепĕр кунне
çыранта ĕнер пĕр кимĕ кăна пулнине аса илнĕ.
Унтан та ытларах, вĕсем Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсем ларнă кимĕ çине кĕменнине те,
вĕренекенĕсем Унсăрах ишсе кайнине те пĕлнĕ.
23 Çав вăхăтра Тивериадăран урăх кимĕсем пырса
çитнĕ. Вĕсем Хуçамăр пиллесе панă çăкăра çинĕ
вырăнтан инçех мар чарăннă. 24 Анчах Иисус та,
вĕренекенĕсем те ку çыранта çуккине пĕлсен халăх
кимĕсем çине ларнă та Иисуса шыраса Капернаума
ишсе кайнă. 25 Вара, Ăна тинĕс тепĕр енче тупсан,
тĕлĕнсе каланă: «Равви! Эсĕ хăçан кунта килме
ĕлкĕртĕн?» 26 Иисус вĕсене çапла хуравланă: «Чăн-
чăнах калатăп сире: Эсир Мана хăватсем курнăран
мар, çăкăр çисе тăраннăран шыратăр. 27 Çĕр çинчи
вăхăтлăх апат-çимĕçшĕн ан тăрăшăр, Этем Ывăлĕ
паракан ĕмĕрлĕх апат-çимĕçшĕн тăрăшăр. Мĕншĕн
тесен Этем Ывăлне Турă Хăйĕн пиллĕхĕпе
палăртнă». 28 «Ĕçĕмĕрсем Турра юрăхлă пулччăр
тесен пирĕн мĕн тумалла?» – ыйтнă вара вĕсем.
29 «Турă Янине ĕненесси Турра юрăхлă пĕртен-пĕр
ĕç пулать», – хуравланă вĕсене Иисус. 30 «Хăвна
ĕнентерес тесе Эсĕ пире мĕнле паллă кăтартăн? –
ыйтнă вĕсем. – Эсĕ мĕн тума пултаратăн? 31 Пирĕн
аттемĕрсем пуш хирте маннă çинине астăватăр
ĕнтĕ. Çырнинче çапла каланă: „Çиме вĕсене çӳлтен
Турă çăкăр панă“». 32 «Чăн-чăнах калатăп, – тенĕ
Иисус. – Çӳлти çăкăра сире Моисей паман, çӳлти
чăн-чăн çăкăра сире Ман Аттем парать. 33 Мĕншĕн
тесен Турă çăкăрĕ вăл – Çӳлтен Анаканни, тĕнчене
пурăнăç Параканни». 34 Вара вĕсем Ăна тархасла
пуçланă: «Хуçамăр! Пире яланах çав çăкăра парса
тăрсамччĕ!» 35 Иисус вĕсене çапла каланă: «Пурăнăç
çăкăрĕ – Эпĕ. Ман патăма килекен нихăçан та
выçăхмĕ, Мана ĕненекенĕн нихăçан та ăшĕ хыпмĕ.
36 Анчах та, Эпĕ сире каланăччĕ ĕнтĕ, эсир Мана
куртăр, çапах та ĕненместĕр. 37 Аттем Мана
панисем пурте Ман патăма килĕç. Хам патăма
килекенсене Эпĕ нихăçан та хăваласа ямăп.
38 Мĕншĕн тесен Эпĕ çӳлтен Хам ирĕкĕме тума мар,
Хама кунта яракан Аттемĕн ирĕкне тума антăм.
39 Мана кунта яракан Атте ирĕкĕ вара çапла: Хама
панисенчен пĕрне те Манăн çухатмалла мар,
юлашки кун çитсен вĕсене пурне те вилĕмрен
чĕртсе тăратмалла. 40 Мана кунта Яракан ирĕкĕ
çакăн пек: Ывăлне куракан, Ăна ĕненекен кашни
çын ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулмалла. Эпĕ вара ăна
юлашки кун, суд кунĕ çитсен, чĕртсе тăратăп».
41 «Эпĕ – çӳлтен аннă çăкăр» тенине илтсен
иудейсем Иисуса ӳпкелеме пуçланă. 42 «Ку – Иосиф
ывăлĕ Иисус мар-им вара? – тенĕ вĕсем. – Эпир
Унăн ашшĕпе Амăшне палланă çинчех Вăл епле-ха
„Эпĕ çӳлтен антăм“ теме хăять?» 43 «Ан ӳпкелешĕр, –
тенĕ вĕсене Иисус. 44 – Мана кунта яракан Атте
çавăтса пымасăр сирĕнтен пĕри те Ман патăма
çитеймĕ. Хам патăма çитнисене Эпĕ юлашки кун
чĕртсе тăратăп. 45 Пророксен кĕнекинче „Турă
вĕсене пурне те вĕрентĕ“ тесе çырнă. Аттене итлесе
вĕренекен кашни çын Ман патăма çитет. 46 Ку сăмах
Аттене кам та пулин курнине пĕлтермест. Турăран
Килни кăна Ашшĕне курнă. 47 Чăн-чăнах калатăп
сире: Мана ĕненекен ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулать.
48 Эпĕ – пурăнăç çăкăрĕ. 49 Сирĕн мăн аслаçăрсем
пуш хирте маннă çинĕ, çапах та вилнĕ. 50 Çӳлтен
анакан ку çăкăр вара çавнашкал: ăна çиекен
нихăçан та вилмест. 51 Эпĕ – çӳлтен аннă чĕрĕлĕх
çăкăрĕ. Çав çăкăра çиекен ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ. Эпĕ
паракан çăкăр вăл – Манăн Ӳтĕм. Ăна Эпĕ тĕнче
пурăнăçĕшĕн парăп». 52 «Епле-ха Вăл Хăй Ӳтне пире
çиме парĕ?» – тесе иудейсем пĕр-пĕринпе
тавлашсах кайнă. 53 «Чăн-чăнах калатăп сире, –
тенĕ вĕсене Иисус, – эсир Этем Ывăлĕн Ӳтне
çимесен, Юнне ĕçмесен, чĕрĕлĕхлĕ пулаймăр.
54 Ман Ӳтĕме çиекен, Юнăма ĕçекен ĕмĕрлĕх
пурăнăçлă пулать. Юлашки кун çитсен, Эпĕ ăна
чĕртсе тăратăп. 55 Мĕншĕн тесен чăн-чăн çимĕç –
Манăн Ӳтĕм, чăн-чăн ĕçме – Манăн Юнăм. 56 Ман
Ӳтĕме çиекен, Юнăма ĕçекен ĕмĕр-ĕмĕр Манра
пурăнать, Эпĕ те çав çынра ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăп.
57 Мана янă чĕрĕлĕхлĕ Аттем Мана чĕрĕлĕх панă
пекех, Манăн Ӳтĕме çиекене те Эпĕ чĕрĕлĕх парăп.
58 Çавă ĕнтĕ çӳлтен аннă çăкăр пулать те. Вăл мăн
аслаçăрсем çинĕ маннă пек мар, вĕсем ăна çинĕ,
çапах та вилнĕ. Ку çăкăра çиекен ĕмĕр-ĕмĕр
пурăнĕ». 59 Çак сăмахсене Вăл Капернаумри
синагогăра вĕрентнĕ чухне каланă.

## Ĕмĕрлĕх пурăнăç сăмахĕсем

60 Унăн сăмахне итлесе пĕтерсен чылай
вĕренекенĕ çапла каланă: «Ытла та йывăр вĕрентӳ-
çке ку! Кам ăна ăша хывма пултарĕ?» 61 «Сире çакă
та пăтраштарать-и? – тенĕ вĕсене Иисус, çав
сăмахсемшĕн вĕренекенĕсем ӳпкелешнине пĕлсе
тăрса. 62 – Этем Ывăлĕ Хăй малтан пулнă вырăна

çĕкленсе кайнине курсан, мĕн тăвăр-ши эсир?
63 Чун-чĕм чĕрĕлĕхлĕ тăвать, ӳт-пӳрен ним усси те
çук. Манăн сăмахăмсем вара чун-чĕмлĕ те
чĕрĕлĕхлĕ. 64 Çапах сирĕн хушшăрта
ĕненменнисем те пур». Çакна Иисус кам-кам
ĕненменнине те, Хăйне кам сутассине те малтанах
пĕлсе тăнăран каланă. 65 Унтан хушса хунă:
«Çавăнпа та Эпĕ сире Аттем пулăшмасăр сирĕнтен
пĕри те Ман патăма çитеймĕ тесе каларăм».
66 Çавăн хыççăн чылай вĕренекенĕ Иисусран
сивĕннĕ, Унпа çӳреме пăрахнă. 67 «Сирĕн те пăрахса
каяс килмест-и?» – ыйтнă çавăн чухне Иисус Вун
иккĕшĕнчен. 68 «Хуçамăр! – тенĕ вара Петр текен
Симон. – Пирĕн кам патне каяс? Ĕмĕрлĕх пурăнăç
сăмахĕсем Санра. 69 Эсĕ – Христос, чĕрĕ Турă Ывăлĕ
иккенне эпир ĕнентĕмĕр те, пĕлтĕмĕр те». 70 «Сире,
Вун иксĕре, Эпĕ Хам суйласа илмерĕм-им? – тенĕ
вĕсене Иисус. – Анчах та сирĕнтен пĕри – шуйттан!»
71 Çакна Вăл Симон ывăлĕ Иуда Искариот çинчен
каланă, мĕншĕн тесен Иуда, Вун иккĕшĕнчен пĕри
пулин те, Иисуса сутма шухăш тытнă.

## Иисуса тăванĕсем ĕненменни

7 Кайран Иисус Галилейăра çӳренĕ. Иудейсен
ятлă-сумлă çыннисем Хăйне вĕлересшĕн
пулнине пĕлсе Вăл Иудея çĕрне каяс темен.
2 Иудейсен чатăр уявĕ çывхарса килнĕ. 3 Çавăн
чухне тăванĕсем Ăна каланă: «Текех кунта ан юл. Ху
тăвакан тĕлĕнмелле ĕçӳсене вĕренекенӳсене
кăтартма Иудейăна кай. 4 Мĕншĕн тесен паллă çын
пулас текен хăйĕн ĕçĕсене вăрттăн тумасть. Эсĕ
çакнашкал ĕçсем тăватăн пулсан эппин Хăвна
тĕнчене кăтарт». 5 Тăванĕсем те Ăна ĕненмен.
6 «Манăн вăхăтăм çитеймен-ха, – тавăрнă вĕсене
Иисус, – сирĕншĕн вара яланах майлă вăхăт.
7 Тĕнче сире курайми пулас çук. Эпĕ унăн ĕçĕсем
усаллине çирĕплетсе пĕлтеретĕп, çавăнпа тĕнче
Мана кураймасть. 8 Эсир çак уява кайăрах. Эпĕ
хальлĕхе тăхтам, мĕншĕн тесен Манăн вăхăтăм
çитеймен-ха». 9 Çапла каласа Иисус Галилейăрах
юлнă.

## Иисус чатăр уявĕнче

10 Анчах, тăванĕсем уява кайсан, Иисус унта
никама систермесĕр пынă. 11 Уявра иудейсен ятлă-
сумлă çыннисем: «Ăçта Вăл?» – тесе Ăна шыранă.
12 Халăх хушшинче Ун пирки тĕрлĕ сăмах çӳренĕ.
«Ырăскер Вăл», – тесе каланă пĕрисем. «Çук, çук!
Вăл халăха улталать кăна!» – хирĕçленĕ теприсем.
13 Анчах та хăйсен ятлă-сумлă çыннисенчен
хăранипе пурте Ун çинчен вăрттăн çеç калаçнă.
14 Çур уяв иртнĕ тĕлелле Иисус Турă Çуртне кĕрсе
вĕренте пуçланă. 15 «Вĕренмен пулин те, Çырнинче
мĕн каланине ăçтан пĕлет-ха Вăл?» – тĕлĕннĕ
иудейсем. 16 Иисус вĕсене çапла хуравланă: «Манăн
вĕрентĕвĕм Хамран мар, Мана кунта Яракантан.
17 Кам Унăн ирĕкне пурнăçлас тет, вăл çак вĕрентӳ
Турăран е Хамран пулнине те пĕлĕ. 18 Хăйĕнчен
калакан хăйшĕн çеç мухтав шырать. Кам Хăйне
кунта Яраканшăн мухтав шырать, Вăл чăннине
калать; Унăн чĕри ултавсăр. 19 Моисей сире саккун
паман-и вара? Çапах та сирĕнтен пĕри те саккун
хушнине тумасть. Мĕншĕн эсир Мана
вĕлересшĕн?» 20 Халăх Ăна хирĕç: «Сана усал
ермен-и? Кам сана вĕлересшĕн?» – тесе каланă.
21 Иисус сăмахне малалла тăснă: «Эпĕ шăмат кун
йăлине пĕрре пăсрăм та, эсир пурте тĕлĕнетĕр.
22 Моисей сире ӳт кастарма хушнă. Тĕрĕссипе, ку
йăла Моисейран та мар, мăн аслаçăрсенченех
тухнă. Çавăнпа эсир шăмат кун та ӳт кастаратăр.
23 Çапла вара, Моисей саккунне пăсас мар тесе, çын
шăмат кун та ӳт кастарать. Мĕншĕн-ха эппин эсир
Мана шăмат кун та çынна сыватать тесе
çилленетĕр? 24 Çиелтен пăхса ан айăплăр, тӳрĕ суд
туса айăплăр».

## Килмелли Христос Вăлах-и?

25 Çавăн чух Иерусалим çыннисенчен хăшĕ-пĕри:
«Çакна вĕлересшĕн шырамаççĕ-и-ха? – тенĕ. 26 – Акă
Вăл уççăнах калаçать, çапах та Ăна никам та
чармасть. Тен, Вăл чăнах Христос пулнине
пуçлăхсем пĕлеççĕ? 27 Анчах та эпир Вăл ăçта
çуралса ӳснине пĕлетпĕр. Турă Суйласа илни килес
пулсассăн, Вăл ăçтан иккенне никам та пĕлмĕччĕ».
28 Çавăн чухне Иисус, Турă Çуртĕнче вĕрентсе,
хыттăн каланă: «Эсир Мана та, Эпĕ ăçта çуралнине
те пĕлетĕр. Эпĕ кунта Хам тĕллĕн килмен. Мана
кунта Яраканĕ чăн-чăн, анчах та эсир Ăна
пĕлместĕр. 29 Ун патĕнчен килнĕ пирки Эпĕ Ăна
пĕлетĕп, Мана Вăл ячĕ». 30 Вĕсем вара Иисуса
тытасшăн пулнă. Çапах никам та Ун çине алă
çĕклеймен, мĕншĕн тесен Унăн вăхăчĕ çитеймен
пулнă-ха. 31 Кирек епле пулсассăн та, чылайăшĕ Ăна
ĕненнĕ. «Турă Суйласа илни килсен, Ку тунă
хăватсенчен те ытларах тăвĕ-ши вара?» – тенĕ
вĕсем.

## Иисуса тытасшăн пулни

32 Халăхра Иисус çинчен çапла калаçнине
фарисейсем илтнĕ. Вара аслă священниксемпе
фарисейсем Турă Çурчĕн хуралçисене Ăна тытма
янă. 33 Иисус вĕсене çапла каланă: «Ĕнтĕ Манăн
сирĕнпе пуласси нумаях юлмарĕ, часах Хама кунта
Яракан патне кайăп. 34 Эсир Мана шырăр, анчах та
тупаймăр. Эпĕ каяс çĕре эсир çитеймĕр». 35 «Эпир
тупмалла марах ăçта каясшăн вара Вăл? – тесе
калаçнă иудейсем. – Тен, Вăл грексем хушшине
саланнă иудейсене, унтан тата грексене вĕрентсе
çӳресшĕн? 36 Тата Вăл „Эсир Мана шырăр, анчах та
тупаймăр, Эпĕ каяс çĕре эсир çитеймĕр“ тесе
калани мĕне пĕлтерет-ши?»

### Чĕрĕлĕх юхан шывĕсем

37 Уявăн юлашки, аслă кунĕнче Иисус ура çине
тăрса пурте илтмелле çапла каланă: «Камăн ĕçес
килет, çавă Ман патăма килтĕр те ĕçтĕр. 38 Кам мана
ĕненет, унăн, Çырнинче каланă пек, „чĕринчен
чĕрĕлĕх юхан шывĕсем юхĕç“». 39 Çакна Иисус
Хăйне ĕненекенсем илес Святой Сывлăш çинчен
каланă. Иисус мухтава тухман пирки ун чухне вĕсен
чун-чĕринче Святой Сывлăш пулман-ха.
40 «Ку чăнах та пророк», – тенĕ çак сăмахсене
илтнĕ çынсенчен чылайăшĕ. 41 «Ку – Турă Суйласа
илни, Христос», – тенĕ хăшĕ-пĕри. Теприсем вĕсене
хирĕçлесе каланă: «Христосăн Галилейăран
килмелле мар-çке! 42 Христос Давид йăхĕнчен,
Давид çуралнă Вифлеемран килмелле темен-им
Çырнинче?» 43 Вара халăх Иисус пирки тавлашсах
кайнă. 44 Хăшĕ-пĕри Иисуса тытасшăн та пулнă,
çапах никам та Ун çине алă çĕклеймен.

### Фарисейсемпе аслă священниксен ĕненменлĕхĕ

45 Çапла вара Турă Çурчĕн хуралçисем аслă
священниксемпе фарисейсем патне тавăрăннă.
«Эсир мĕншĕн Ăна тытса килмерĕр?» – тӳрех ыйтнă
лешсем. 46 «Ку Çын калаçнă пек этем тени нихăçан
та калаçманах», – тенĕ Турă Çурчĕн хуралçисем.
47 «Вăл вара мĕн, сире те Хăй майлă çавăрчĕ-им? –
ыйтнă фарисейсем. 48 – Пуçлăхсемпе
фарисейсенчен кам та пулин ĕненчĕ-и Ăна?
49 Саккун мĕнне те пĕлмен хура халăх çеç ĕненет
Ăна, ылханлă халăх!» 50 Анчах та хăйсен çынниех,
Никодим, пĕррехинче çĕрле Иисус патне пынăскер,
вĕсене çапла каланă: 51 «Пирĕн саккун кам мĕн
тунине малтан хăйĕнчен ыйтса пĕлмесĕр çынна
айăплама хушать-и?» 52 «Эсĕ те Галилея çынни мар
пулĕ те? – тенĕ ăна. – Лайăххах тĕпче те çакна
пĕлсе тăр: ку таранччен Галилейăран пророк
тухман та, тухас та çук».
53 Унтан пурте килĕсене саланнă.

### Мăшăрне улталанă хĕрарăм çинчен

8 Иисус вара Елеон тăвĕ çине кайнă. 2 Ирхине
Вăл каллех Турă Çуртне пынă. Пĕтĕм халăх Ун
патне пуçтарăннă. Вăл ларнă та вĕсене вĕрентме
тытăннă. 3 Çавăнта ун патне саккун вĕрентӳçисемпе
фарисейсем мăшăрне улталанă чухне тытнă
хĕрарăма илсе пырса халăх умне тăратнă.
4 «Вĕрентекен, – тенĕ хайхисем, – çак хĕрарăма
мăшăрне улталанă чухне тытнă. 5 Моисей саккунĕ
тăрăх унашкал хĕрарăмсене чулпа пере-пере
вĕлермелле. Эсĕ мĕн калăн?» 6 Çакна вĕсем Ăна
айăплама сăлтав тупасшăн тĕрĕслесе каланă. Иисус
вĕсене курмăш пулнă та пĕшкĕнсе пӳрнипе çĕр
çине темĕн çыра пуçланă. 7 Лешсем хăйĕнчен çине
тăрсах ыйтнăран Вăл пуçне çĕклесе каланă: «Кам
сирĕнтен çылăхсăр, çавă малтан ăна чулпа петĕр».
8 Вара каллех пĕшкĕнсе çĕр çине темĕн çырнă.
9 Хĕрарăма илсе пынă хайхи çынсем çакна илтсен,
намăсланса, саланма тытăннă. Çапла аслинчен
пуçласа кĕçĕнни таранах пĕрин хыççăн тепри тухса
кайнă. Юлашкинчен вара халăх умĕнче тăнă
хĕрарăмпа Иисус кăна тăрса юлнă. 10 Иисус пуçне
çĕкленĕ те, никам та тăрса юлманнине курса,
хĕрарăмран ыйтнă: «Эй, хĕрарăм, сана
айăплакансем ăçта кайса кĕчĕç? Никам та сана
айăпламарĕ-и?» 11 «Никам та айăпламарĕ,
Хуçамăр!» – тавăрнă хĕрарăм. «Эпĕ те сана
айăпламастăп. Каях, текех çылăха ан кĕр», – тенĕ
Иисус .

### Иисус Христос – тĕнче çути

12 Иисус татах халăха каланă: «Эпĕ – тĕнче çути.
Ман хыçăмран пыракан тĕттĕмлĕхре çӳремĕ, вăл
чĕрĕлĕх çутиллĕ пулĕ». 13 Çавăн чухне фарисейсем:
«Эсĕ Ху çинчен Ху çирĕплетсе пĕлтеретĕн, çавăнпа
та Эсĕ каласа çирĕплетни чăн мар», – тенĕ. 14 Иисус
çапла хуравланă: «Хам çинчен Хам çирĕплетсе
пĕлтеретĕп пулин те, Эпĕ пĕлтерни чăн. Мĕншĕн
тесен Эпĕ Хам ăçтан килнине, ăçта каяссине
пĕлетĕп. Эсир вара Эпĕ ăçтан килнине те, ăçта
каяссине те пĕлместĕр. 15 Эсир этем виçипе виçсе
айăплатăр, Эпĕ никама та айăпламастăп. 16 Айăплас
пулсан та, Манăн судăм чăн пулĕччĕ, мĕншĕн тесен
Эпĕ Хам тĕллĕн мар, Хама кунта яракан Аттепе
пĕрле суд тăватăп. 17 Иккĕн кăтартса пани чăн тесе
сирĕн саккунăрта та çырнă. 18 Ман çинчен
çирĕплетсе пĕлтерекенсем вара иккĕн: Эпĕ Хам
тата Мана кунта яракан Аттем». 19 «Санăн Аçу ăçта?»
– ыйтнă Унран. Иисус вĕсене хирĕç каланă: «Эсир
Мана та, Аттеме те пĕлместĕр. Мана пĕлес пулсан
Манăн Аттене те пĕлнĕ пулăттăрччĕ». 20 Иисус çак
сăмахсене Турă Çуртĕнче, укçа арчи патĕнче,
вĕрентнĕ чухне каланă. Унăн асап вăхăчĕ çитеймен
пирки çавăн чухне Ăна никам та тĕкĕнмен. 21 Иисус
вĕсене татах каланă: «Эпĕ каятăп, эсир Мана
шырама пуçлăр, çылăхăрсене каçарттараймасăрах
вилĕр. Эпĕ каяс çĕре эсир çитеймĕр». 22 «Мĕншĕн-
ха Вăл „Эпĕ каяс çĕре эсир çитеймĕр“ терĕ, Хăйне
Хăй вĕлерме шут тытман пулĕ те?» – тесе
калаçкаланă вара иудейсем. 23 Иисус малалла
каланă: «Эсир – çĕр çинчисем, Эпĕ вара çӳлтен
килтĕм. Эсир – ку тĕнчерисем, Эпĕ – ку тĕнчери
мар. 24 Çавăнпа Эпĕ сире „хăвăр çылăхăрпах вилĕр“
тесе каларăм. Эпĕ Кам пулнине ĕненмесен, чăнах
та, хăвăр çылăхăрпах вилĕр». 25 «Кам вара Эсĕ?» –
ыйтнă çавăн чухне Унран. «Кам пулнине Эпĕ сире
темиçе те каларăм, – хуравланă Иисус. – Эпĕ –
пуçламăшĕнченех Пурри . 26 Манăн сирĕн çинчен
каламалли, сире айăпламалли нумай. Анчах та Эпĕ
Хама кунта Яракантан мĕн илтнине кăна тĕнчене
калатăп, мĕншĕн тесен Вăл – Чăнни». 27 Иисус
Хăйĕн Ашшĕ çинчен каланине вĕсем ăнланса
илеймен. 28 Çавăнпа та Иисус татах каланă: «Эпĕ
Кам пулнине Мана хĕрес çине çĕклесен тин пĕлĕр.
Ун чухне эсир Эпĕ Хам тĕллĕн нимĕн те туманнине,

Аттем вĕрентнĕ пек кăна каланине те ăнланăр.
29 Мана кунта Яракан Манпа пĕрлех. Эпĕ яланах
Ăна юрăхлине кăна тунăран Аттем Мана
пăрахмасть, пĕччен хăвармасть». 30 Вăл çапла
каланине илтсен чылайăшĕ Ăна ĕненме пуçланă.

### Чăнлăх сире ирĕке кăларĕ

31 Вара Иисус Хăйне ĕненнĕ иудейсене каланă:
«Эсир Ман сăмахăмран иртмесен Манăн чăн-чăн
вĕренекенĕмсем пулăр. 32 Çавăн чухне эсир
чăнлăха пĕлĕр, вара чăнлăх сире ирĕке кăларĕ».
33 Иудейсем Ăна хирĕçлесе çапла каланă: «Эпир
Авраам йăхĕнчен, эпир нихăçан та никам чури те
пулман. Епле-ха Эсĕ тата пире ирĕке кăларасшăн?»
34 «Чăн-чăнах калатăп сире, – тавăрнă вĕсене Иисус,
– çылăха кĕрекен кирек кам та – çылăх чури. 35 Хуçа
килĕнче чура ĕмĕрех пурăнаймасть, Ывăлĕ вара
ĕмĕрех пурăнать. 36 Çавăнпа Ывăлĕ сире ирĕке
кăларсан тин эсир чăннипех ирĕклĕ пулăр. 37 Эсир
Авраам йăхĕнчен пулнине пĕлетĕп. Анчах Ман
сăмахăмсем чĕрĕре шăнăçайманран эсир Мана
вĕлерме те хатĕр. 38 Эпĕ Хам Аттем патĕнче мĕн
курнине каласа кăтартатăп. Эсир вара хăвăр аçăр
патĕнче мĕн курнă, çавна тăватăр».
39 «Пирĕн Аттемĕр – Авраам!» – тенĕ Ăна хирĕç.
Иисус вĕсене çапла каланă: «Эсир Авраам ачисем
пулсан хăвăра Авраам пекех тыткаланă пулăттăр.
40 Эсир вара Мана, Турăран илтнĕ чăнлăха хăвăра
каласа паракан Çынна, вĕлерме шутлатăр. Авраам
унашкал хăтланман. 41 Эсир хăвăр аçăрăн ĕçĕсенех
тăватăр». Ăна хирĕç вара: «Эпир вĕлтĕрен çинчи
ачасем мар вĕт, пирĕн пĕртен-пĕр Аттемĕр пур, Вăл
– Турă», – тенĕ. 42 «Эпĕ Хам тĕллĕн килмен, Турă
патĕнчен анса килнĕ. Мана Вăл янă, – тавăрнă
Иисус. – Çавăнпа та, сирĕн Аçăр Турă пулсассăн
эсир Мана юратнă пулăттăр. 43 Мĕншĕн-ха эсир Эпĕ
каланине ăнланмастăр? Мĕншĕн тесен Ман
сăмахăма итлеме мехел çитерейместĕр. 44 Эсир
Авраам ачисем мар, шуйттан ачисем, эсир унăн
кăмăлне тивĕçтересшĕн тăрăшатăр. Вăл вара чăн
пуçламăшĕнченех çын вĕлерекен пулнă. Чĕринче
чăнлăх пулманран вăл чăнлăха та йышăнман.
Суйса калаçнă чухне те вăл хăйĕн сăмахĕсенех
калать, мĕншĕн тесен вăл ултавçă, ултав ашшĕ.
45 Эпĕ чăннине каланине вара эсир ĕненместĕр.
46 Кам сирĕнтен Мана çылăхлă тесе айăплаять?
Енчен те Эпĕ чăннине калатăп пулсан, мĕншĕн
Мана ĕненместĕр? 47 Турă ачисем Турă сăмахне
итлеççĕ. Турă ачисем пулманран эсир Мана
итлеместĕр те».

### Эпĕ – пур, Авраам çураличчен те пулнă

48 «Эпир Сан пирки Самари çынни, Санăн ăшунта
усал сывлăш тесе калани тĕрĕсех-иç», – тавăрнă
Ăна иудейсем. 49 «Мана усал ермен, – тенĕ Иисус, –
Эпĕ Хам Аттеме чыслатăп, эсир вара Мана
чыссăрлататăр. 50 Тепĕр тесен, Мана мухтав кирлĕ
мар. Мухтава кăлараканни тата Суд тăваканни вара
– Урăххи. 51 Чăн-чăнах калатăп сире: Ман сăмахăма
итлесе пурнăçлакан нихăçан та вилмест». 52 «Халĕ
ĕнтĕ сана чăнах та усал ернине пĕлтĕмĕр, – тенĕ
Ăна иудейсем. – Авраам та, пророксем те вилнĕ,
Эсĕ вара „Ман сăмахăма пурнăçлакан нихăçан та
вилмест“ тетĕн. 53 Эсĕ мĕн, пирĕн мăн асаттемĕр
Авраамран та чаплăрах-им? Вăл та, пророксем те
вилнĕ. Эсĕ Хăвна Кам вырăнне хуратăн?» 54 Иисус
вара çапла каланă: «Хама Хам мухтатăп пулсан Ман
мухтавăм ним тĕшне те тăмасть. Эсир Туррăмăр
теекен Аттем Мана мухтава кăларать. 55 Эсир Ăна
пĕлсе çитмен-ха, Эпĕ вара пĕлетĕп. Ăна пĕлместĕп
тесен Эпĕ сирнешкел суеçĕ кăна пулăп. Анчах та
Эпĕ Ăна пĕлетĕп, Унăн сăмахне пурнăçласа
тăратăп. 56 Сирĕн мăн аслаçăр Авраам Эпĕ килнĕ
вăхăта пит курасшăнччĕ: курчĕ те – савăнмаллипех
савăнчĕ». 57 «Эсĕ халĕ алла та çитмен, ăçтан
Авраама курма пултарнă?!» – тенĕ иудейсем.
58 «Чăн-чăнах калатăп сире, – тенĕ Иисус, – Эпĕ –
пур, Авраам çураличчен те пулнă». 59 Тарăхса
кайнипе иудейсем Ăна вĕлерес тесе чулсем ярса
тытнă. Анчах Иисус, курăнмăш пулса, вĕсем
хушшипелех Турă Çуртĕнчен тухса кайнă.

### Суккăр çуралнă çынна сыватни

9 Иртсе пынă чух Иисус суккăр çуралнă çынна
курнă. 2 Вĕренекенĕсем Унран ыйтнă: «Равви!
Çак çын кама пула суккăр çуралнă? Кам çылăха
кĕнĕ: хăй е ашшĕ-амăшĕ?» 3 «Вăл хăй те, ашшĕ-
амăшĕ те çылăха кĕмен, – хуравланă Иисус. – Турă
хăватне палăртма çапла çуралнă вăл. 4 Мана кунта
Яраканăн ĕçне пирĕн кун çути пур чухне тумалла.
Каç пулсан никам та ĕçлеймест. 5 Çак тĕнчере чухне
Эпĕ – тĕнче çути». 6 Çакна каласан Иисус çĕре
сурнă. Вара сурчăкне тăпрапа çăрса пылчăк тунă та
унпа суккăрăн куçне сĕрнĕ. 7 «Халĕ кай та Силоам
шывĕнче çăвăн», – тенĕ ăна Иисус. Вăл кайса
çăвăннă та куракан пулса тавăрăннă. «Силоам»
тени «янăскер» тени пулать. 8 «Ку хайхи ыйткаласа
ларакан çын мар-и?» – тенĕ маларах вăл
суккăррине курнă çынсемпе кӳршисем. 9 «Çавă», –
тенĕ пĕрисем. «Çук-çук, вăл сăнĕпе кăна ун
евĕрлĕрех», – хирĕçленĕ теприсем. «Эпĕ чăнах та
çавă», – тесе çирĕплетнĕ вăл хăй. 10 Вара унран:
«Санăн куçу епле уçăлчĕ?» – тесе ыйта пуçланă.
11 «Пĕр Çын, Иисус ятлăскер, пылчăк туса ман
куçăма сĕрчĕ те Силоам шывĕпе кайса çăвăнма
хушрĕ, – тенĕ çав çын. – Эпĕ кайса çăвăнтăм та
куракан пултăм». 12 «Ăçта халĕ Вăл?» – ыйтнă унран.
«Пĕлместĕп», – тенĕ лешĕ.

### Сывалнă çынна тĕпчени

13 Вара вĕсем суккăр пулнă çынна фарисейсем
патне илсе кайнă. 14 Иисус пылчăк туса суккăра
сыватнă чух шăмат кун пулнă. 15 Фарисейсем те
унран куçĕ епле уçăлнине тĕпченĕ. «Куçăма Вăл

пылчăкпа сĕрчĕ, унтан эпĕ çăвăнтăм та куракан
пултăм», – тенĕ вăл. 16 «Вăл Çын Турăран мар,
мĕншĕн тесен Вăл шăмат куна хисеплемест», – тенĕ
вара хăш-пĕр фарисейсем. «Çакăн пек тĕлĕнмелле
ĕçе çылăхлă çын епле тума пултарайтăр?» –
хирĕçленĕ теприсем. Вара вĕсем тавлашсах кайнă.
17 «Хăвăн куçна уçакан çинчен эсĕ мĕн калăн?» –
каллех ыйтаççĕ вĕсем куракан пулнă çынран. «Вăл –
пророк», – тенĕ вара лешĕ.
18 Суккăр çын куракан пулнине иудейсен ятлă-
сумлă çыннисем ниепле те ĕненесшĕн пулман.
Вĕсем унăн ашшĕпе амăшне чĕнтернĕ. 19 «Суккăр
çуралнă текен ывăлăр çакă-и? – ыйтнă вĕсем
ашшĕпе амăшĕнчен. – Епле-ха вăл халĕ куракан
пулчĕ?» 20 «Эпир ку хамăр ачах пулнине, вăл суккăр
çуралнине кăна пĕлетпĕр, – хуравланă ашшĕпе
амăшĕ. 21 – Халĕ епле куракан пулнине те, унăн
куçне кам уçнине те эпир вара пĕлместпĕр.
Хăйĕнчен ыйтăр ара. Вăл çитĕннĕ çын-иç, унăн
хăйĕн те чĕлхи пур». 22 Ашшĕпе амăшĕ иудейсен
ятлă-сумлă çыннисенчен хăранипе çапла каланă.
Мĕншĕн тесен ятлă-сумлисем Ăна Христос тесе
йышăнакансене синагогăран уйăрса ярас тесе
калаçса татăлнă пулнă. 23 Çавăнпа ĕнтĕ ашшĕ-
амăшĕ «Вăл çитĕннĕ çын-иç, унăн хăйĕн те чĕлхи
пур» тесе каланă.
24 Çапла вара, иудейсем куракан пулнă çынна
татах тепĕр хут чĕнсе илнĕ. «Суймастăп тесе Турра
асăн, – тенĕ вĕсем ăна, – Вăл çылăхлă Çын пулнине
эпир пĕлетпĕр». 25 «Çылăхлă-и Вăл, çылăхлă мар-и –
пĕлместĕп, – тавăрса каланă хайхи, – пĕр çакна
кăна пĕлетĕп: эпĕ суккăрччĕ, халĕ вара куратăп».
26 «Мĕн турĕ Вăл сана? Санăн куçна епле уçрĕ?» –
татах ыйтнă унран. 27 «Эпĕ ĕнтĕ каларăм, анчах
эсир илтместĕр, – тавăрнă çак çын. – Тата мĕн
илтесшĕн эсир? Тен, эсир те Унăн вĕренекенĕсем
пуласшăн?» 28 «Унăн вĕренекенĕ – эсĕ! – хăтăрса
тăкнă ăна. – Эпир вара Моисей вĕренекенĕсем!
29 Турă Моисейпа калаçнине эпир пĕлетпĕр. Ку Çын
ăçтан иккенне вара пачах та пĕлместпĕр».
30 «Тĕлĕнмелле! – тенĕ куракан пулнă çын. – Вăл
манăн куçăма уçрĕ, эсир вара Вăл ăçтан иккенне те
пĕлместĕр. 31 Анчах та çылăхлă çынна Турă
итлеменнине пĕлетпĕр вĕт-ха. Вăл Хăйне
хисеплекене, Хăйĕн ирĕкне пурнăçлакана кăна
итлет. 32 Суккăр çуралнă çыннăн куçне кам та пулин
уçнă тенине халиччен илтменччĕ. 33 Ăна кунта Турă
яман пулсан, Вăл нимĕн те тăваймĕччĕ». 34 «Эсĕ,
çылăхлă çуралнăскер, тата пире вĕрентесшĕн-и?» –
тесе вĕсем ăна хăваласа янă.

### Курнă çинчех курмастăр

35 Ăна хăваласа янă тенине илтсен Иисус çав
çынна шыраса тупнă та ыйтнă: «Эсĕ Турă Ывăлне
ĕненетĕн-и?» 36 «Эй, ырă Çыннăм, – тавăрнă вăл
Иисуса, – Вăл Кам пулнине каласамччĕ, вара эпĕ
Ăна ĕненĕттĕм». 37 «Эсĕ Ăна куртăн ĕнтĕ, Вăл санпа
калаçса тăрать», – тенĕ Иисус. 38 Вара вăл:
«Ĕненетĕп, Хуçамăр», – тенĕ те Ăна ӳксе пуççапнă.
39 Унтан Иисус çапла каланă: «Суккăррисем куракан
пулччăр тесе, кураканнисем суккăр пулччăр тесе
Эпĕ çак тĕнчене суд тума килтĕм». 40 Çакна илтсен
Унпа юнашар тăракан хăш-пĕр фарисейсем каланă:
«Эпир те суккăр-им вара?» 41 «Енчен те эсир суккăр
пулнă пулсан çылăхлă пулмăттăр. Анчах та эсир
„куратпăр“ тетĕр, çавăнпа çылăхăр хăвăрпах
юлать», – тавăрнă вĕсене Иисус.

### Кĕтӳçĕ çинчен каланă ытарлăх

10 «Чăн-чăнах калатăп сире: кам сурăх картине
алăкран кĕмест, урăх çĕртен каçса кĕрет, çав –
вăрă-хурах. 2 Алăкран кĕрекенни çеç чăн-чăн сурăх
кĕтӳçи. 3 Ăна хуралçă алăкне уçса парать, сурăхсем
ун сассине илтеççĕ, вăл хăйĕн сурăхĕсене ятран
чĕнсе кăларать. 4 Сурăхсене кăларсан вăл кĕтӳ
пуçĕнче пырать. Сурăхĕсем, унăн сассине
палланăран, ун хыççăн пыраççĕ. 5 Вĕсем ют çын
хыççăн каймаççĕ, сассине палламанран вĕсем
унран тараççĕ». 6 Иисус ытарлă каланине
фарисейсем ăнланса илеймен.

### Иисус – ырă Кĕтӳçĕ

7 Вара Иисус Хăйĕн сăмахне малалла тăснă: «Чăн-
чăнах калатăп сире: Эпĕ – сурăхсем валли тунă
алăк. 8 Манран малтан килнисем пурте вăрă-
хурахсем пулнă пирки сурăхсем вĕсене итлемерĕç.
9 Эпĕ – алăк: Ман витĕр кĕрекен çăлăнĕ. Вăл кĕрĕ те,
тухĕ те, улăх-çаран та тупĕ. 10 Вăрă вăрлама,
вĕлерме, пĕтерме анчах килет. Эпĕ сире чĕрĕлĕх
пама, тулли пурăнăçлă тума килтĕм. 11 Эпĕ – ырă
кĕтӳçĕ. Ырă кĕтӳçĕ сурăхĕсемшĕн чунне парать.
12 Тара тытнă çын кĕтӳçĕ мар, сурăхĕсем те унăн
хăйĕн мар. Кашкăр çывхарнине курсан вăл
сурăхĕсене пăрахсах тарать. Кашкăр вара
сурăхсене туртса çурать, кĕтĕвне салатса ярать.
13 Тара тытнă çын вăл тара тытнă çынах,
сурăхсемшĕн тăрăшмасть, тарать. 14 Эпĕ – ырă
кĕтӳçĕ. Эпĕ Хам сурăхăмсене пĕлетĕп, вĕсем те
Мана пĕлеççĕ. 15 Аттем Мана пĕлнĕ пекех, Эпĕ те
Аттеме пĕлетĕп. Эпĕ сурăхăмсемшĕн чунăма
паратăп. 16 Манăн урăх сурăхсем те пур, вĕсем ку
картара мар. Манăн вĕсене те илсе килмелле.
Вĕсем те Ман сасса илтĕç, вара пĕр кĕтӳ, пĕр Кĕтӳçĕ
пулĕ. 17 Эпĕ чунăма каялла илес тесе паратăп,
çавăнпа юратать те Мана Аттем. 18 Никам та Ман
чунăма туртса илеймест, ăна Эпĕ Хам паратăп.
Манăн ăна памашкăн та, каялла илмешкĕн те
ирĕкĕм пур. Мана Аттем çапла хушнă».
19 Ку сăмахсем те иудейсене каллех тавлаштарса
янă. 20 «Мĕн итлетĕр Ăна? Усал ернипе Вăл çапла
ăссăрла калаçать!» – тенĕ чылайăшĕ. 21 «Усал ернĕ
çын кун пек сăмахсем калаймĕ, – хирĕçленĕ
теприсем. – Суккăр çын куçне усал уçма пултарать-и
вара?»

## Иудейсем Иисуса йышӑнманни

22 Хӗл ларнӑ. Иерусалимри Турӑ Ҫуртне ҫӗнетнине
асӑнмалли уяв ҫитнӗ. 23 Иисус Турӑ Ҫурчӗн
картишӗнчи Соломон притворӗнче утса ҫӳренӗ.
24 Ҫавӑн чухне Ун тавра иудейсем пухӑннӑ. «Эсӗ
пире хӑҫанччен иккӗлентересшӗн? – тенӗ Ӑна. –
Эсӗ Турӑ Суйласа илни пулсан, кала пире уҫӑмлӑн».
25 Иисус вӗсене ҫапла хуравланӑ: «Эпӗ сире
каларӑм ӗнтӗ, анчах эсир ӗненместӗр. Эпӗ Аттем
ячӗпе тӑвакан ӗҫсем хӑйсемех Ман ҫинчен
ҫирӗплетсе пӗлтереҫҫӗ. 26 Ҫапах та эсир
ӗненместӗр. Мӗншӗн тесен, пӗрре каланӑччӗ ӗнтӗ,
эсир Ман сурӑхсем мар. 27 Ман сурӑхсем сассӑма
итлеҫҫӗ. Эпӗ те вӗсене пӗлетӗп. Вӗсем Ман
хыҫӑмран пыраҫҫӗ. 28 Эпӗ вӗсене ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ
паратӑп, вӗсем нихӑҫан та вилмӗҫ. Вӗсене Ман
аллӑмран никам та туртса илеймӗ. 29 Вӗсене Мана
панӑ Аттем пуринчен те аслӑ. Вӗсене Аттем
аллинчен никам та туртса илеймӗ. 30 Эпӗ те, Аттем
те – пӗр».
31 Хайхи иудейсем Ӑна вӗлерес тесе каллех чулсем
ярса тытнӑ. 32 «Хамӑн Аттем ячӗпе Эпӗ сире нумай
ырӑ ӗҫ туса кӑтартрӑм, – тенӗ Иисус. – Ҫавсенчен
хӑшӗншӗн эсир Мана чулпа пере-пере
вӗлересшӗн?» 33 «Эпир Сана ырӑ ӗҫ тунӑшӑн
вӗлересшӗн мар, – тавӑрнӑ иудейсем. – Эсӗ, ҫын
пуҫҫӑнах Хӑвна Турӑ вырӑнне хурса, Турра хурлатӑн
вӗт-ха!» 34 «Сирӗн саккун кӗнекинче мӗнле ҫырнӑ-
ха? „Эсир – турӑсем, – тесе Эпӗ каларӑм“. Ҫапла
ҫырман-им? – тавӑрнӑ вӗсене Иисус. 35 – Саккун
кӗнекинче Турӑ сӑмахне итлекенсене те турӑ тенӗ.
Ҫырнине хирӗҫлесе калама вара юрамасть.
36 Эппин мӗншӗн-ха эсир Мана, Аттем Хӑй суйласа
илсе тӗнчене Янӑскере, „Эпӗ – Турӑ Ывӑлӗ“
тенӗшӗнех Турра хурлатӑн, тетӗр? 37 Эпӗ Аттем ӗҫне
тумасан Мана ан ӗненӗр. 38 Аттем ӗҫне тӑватӑп
пулсан, Мана ӗненмесен те, Манӑн ӗҫӗмсене
ӗненӗр. Вара тин эсир Аттем Манра пулнине, Эпӗ
те Унра пулнине пӗлсе ӑнланса илӗр». 39 Ҫавӑн
чухне вӗсем Иисуса каллех тытасшӑн пулнӑ, анчах
та Вӑл иудейсенчен хӑтӑлма пултарнӑ.
40 Вара Вӑл каллех Иордан леш енне, Иоанн
унччен шыва кӗртнӗ вырӑна каҫса кайнӑ, пӗр вӑхӑт
унтах пурӑннӑ. 41 Халӑх Ун патне пырсах тӑнӑ.
«Иоанн пӗр хӑват та туса кӑтартмарӗ пулин те, вӑл
ҫак Ҫын ҫинчен каланисем пӗтӗмпех чӑна килчӗҫ»,
– тенӗ ҫынсем. 42 Ҫавӑнта чылайӑшӗ Иисуса ӗненме
пуҫланӑ.

## Лазарь вилӗмӗ

11 Лазарь ятлӑ пӗр ҫын чирлесе ӳкнӗ. Вӑл
Марияпа унӑн аппӑшӗ Марфа пурӑнакан
Вифани ялӗнченех пулнӑ. 2 Ҫав Мария кайран
Хуҫамӑра мирӑ сӗрсе Унӑн урисене хӑйӗн ҫӳҫӗпе
шӑлаканни пулнӑ. Чирлесе ӳкнӗ Лазарь шӑпах
унӑн пиччӗшӗ пулнӑ. 3 Лазарь йӑмӑкӗсем Иисус
патне: «Хуҫамӑр, Санӑн юратнӑ ҫынну чирлӗ», –
тесе калама янӑ. 4 Ҫавна илтсен Иисус каланӑ: «Ку
чир вилмелли чир мар. Ку – Турӑ мухтавне
кӑтартмалли, ҫапла майпа Турӑ Ывӑлне мухтава
кӑлармалли чир». 5 Иисус Марфӑпа йӑмӑкне те,
Лазаре те юратнӑ. 6 Ҫапах та, Лазарь чирлени
ҫинчен илтнӗ пулин те, Иисус Хӑй чарӑнса тӑнӑ
вырӑнта тата икӗ кун пурӑннӑ. 7 Кайран тин
вӗренекенӗсене каланӑ: «Атьӑр каллех Иудейӑна
каяр!» 8 «Равви! – тенӗ Ӑна вӗренекенӗсем. –
Анчахрах Сана иудейсем чулпа пере-пере
вӗлересшӗнччӗ, Эсӗ каллех унта каясшӑн-и?»
9 Иисус вӗсене ҫапла хуравланӑ: «Кун ҫути вун икӗ
сехете пымасть-им вара? Кун ҫутипе ҫӳрекен
такӑнмасть, мӗншӗн тесен вӑл тӗнче ҫутине курать.
10 Ҫӗрле ҫӳрекен такӑнать, мӗншӗн тесен вӑл
ҫутӑсӑр». 11 Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн Вӑл вӗсене каланӑ:
«Лазарь тусӑмӑр ҫывӑрать, Манӑн ӑна кайса
вӑратмалла». 12 «Хуҫамӑр! – тенӗ вӗренекенӗсем. –
Ҫывӑрать пулсассӑн эппин сывалӗ-ха». 13 Иисус
вӗсене Лазарь вилӗмӗ ҫинчен каланӑ.
Вӗренекенӗсем вара ыйхӑ ҫинчен ҫеҫ калать пулӗ
тесе шухӑшланӑ. 14 Вара Иисус тӳррӗнех каланӑ:
«Лазарь вилнӗ. 15 Эпӗ сирӗншӗн савӑнатӑп. Сирӗн
ӗненӗвӗре ҫирӗплетес тесе Эпӗ унта пулмарӑм.
Халӗ ӗнтӗ каяр!» 16 Ҫавӑн чухне Йӗкӗреш тесе ят
панӑ Фома ытти вӗренекенсене каланӑ: «Каяр та
Унпа пӗрлех вилер!»

## Иисус – чӗрӗлӳ тата пурӑнӑҫ

17 Вифани ялне ҫитсен Иисус Лазаре тӑватӑ кун
каяллах пытарнине пӗлнӗ. 18 Вифани ялӗ
Иерусалимран инҫех те мар, пӗр икӗ-виҫӗ ҫухрӑмра
ҫеҫ пулнӑ. 19 Пиччӗшӗшӗн хуйхӑракан Марфӑпа
Марияна лӑплантарма иудейсем чылаййӑн
пухӑннӑ. 20 Иисус килет тенине илтсенех Марфа Ӑна
хирӗҫ кайнӑ. Мария килӗнчех юлнӑ. 21 Ҫавӑн чухне
Марфа Иисуса каланӑ: «Хуҫамӑр! Эсӗ кунта пулнӑ
пулсан пиччем вилмен пулӗччӗ! 22 Ҫапах та Эсӗ мӗн
ыйтнине Турӑ Сана халӗ те парасса эпӗ пӗлетӗп».
23 «Пиччӳ чӗрӗлсе тӑрӗ», – тенӗ ӑна Иисус.
24 «Чӗрӗлсе тӑмалли юлашки кун ҫитсен вилнӗ
ҫынсем чӗрӗлсе тӑрасса хам та пӗлетӗп-ха», – тенӗ
Ӑна Марфа. 25 «Эпӗ – чӗрӗлӳ тата пурӑнӑҫ, – тенӗ
ӑна Иисус. – Мана ӗненекен вилсен те чӗрӗлет.
26 Мана ӗненсе пурӑнакан кирек кам та нихӑҫан та
вилмӗ. Эсӗ ҫакна ӗненетӗн-и?» 27 «Ӗненетӗп,
Хуҫамӑр! – тенӗ Ӑна Марфа. – Эсӗ тӗнчене килмелле
тенӗ Турӑ Ывӑлӗ Христос пулнине ӗненетӗп».

## Иисус Лазарьшӗн хурланни

28 Ҫакна каласан Марфа кайнӑ та хӑйӗн йӑмӑкне
Марияна вӑрттӑн чӗнсе илсе каланӑ: «Вӗрентекен
кунта, Вӑл сана чӗнет». 29 Мария ҫакна илтсенех
васкаса тӑнӑ та Ун патне кайнӑ. 30 Иисус ун чухне
яла кӗмен пулнӑ-ха, Марфӑпа тӗл пулнӑ вырӑнтах
тӑнӑ. 31 Мария хӑвӑрт тӑрса тухнине курсан пӳртре

ăна лăплантарса ларнă иудейсем те ун хыççăн
кайнă. Вĕсем Мария хăй пиччĕшĕн тупăклăхĕ
патне йĕме каять пулĕ тесе шухăшланă. 32 Мария
вара Иисус тăракан вырăна пынă. Иисуса курсан Ун
умне ÿксе пуççапса каланă: «Хуçамăр, Эсĕ кунта
пулнă пулсан, пиччем вилмен пулĕччĕ!» 33 Мария
та, пĕрле пынă иудейсем те хытă йĕнине курсан
кăмăлĕ хуçăлнипе Иисус пăлханса кайнă та
34 каланă: «Ăçта пытартăр эсир ăна?» «Хуçамăр,
пырса пăхсамччĕ», – тенĕ Ăна. 35 Иисусăн куçĕсем
шывланнă. 36 Çавăн чухне иудейсем: «Курăр-ха,
епле юратнă Вăл ăна», – тенĕ. 37 «Вăл суккăр çынна
куракан турĕ, – тенĕ хăшĕ-пĕри. – Тен, Вăл Лазаре
те вилмелле мар тума пултарайĕччĕ?»

## Иисус Лазаре чĕртсе тăратни

38 Иисус, çаплах чун-чĕререн хурланса, Лазаре
пытарнă тупăклăх патне пынă. Ту хăвăлĕн шăтăкне
чулпа хупланă пулнă. 39 «Чулне куçарса хурăр-ха», –
тенĕ Иисус. Вилнин йăмăкĕ, Марфа, Иисуса каланă:
«Хуçамăр, ăна тупăклăха хуни тăватă кун иртрĕ,
виле шăрши те тухнă ĕнтĕ». 40 «Ĕненсен, Турă
мухтавне курăн тесе каламарăм-и-ха Эпĕ сана?» –
тенĕ ăна Иисус. 41 Вилнĕ çын выртакан ту хăвăлĕ
умĕнчи чула илсен Иисус çÿлелле пăхса каланă:
«Аттем! Мана илтнĕшĕн тав тăватăп Сана. 42 Эсĕ
Мана илтессе пĕлетĕп пулин те, çакна Эпĕ кунта
тăракан халăхшăн каларăм. Мана Эсĕ янине
ĕненччĕр терĕм». 43 Çак сăмахсем хыççăн Иисус
хыттăн чĕннĕ: «Лазарь, тух!» 44 Вара вилнĕ тенĕ
Лазарь алли-урине пирпе чĕркенипех, питне-куçне
тутăрпа çыхнипех тухнă. «Чĕркени-çыхнине салтса
илĕр, утма ан чăрмантартăр», – тенĕ çынсене
Иисус.

### *Иисуса хирĕç тунă кавар*

(Мф. 26:1-5; Мк. 14:1-2; Лк. 22:1-2)

45 Çавăн чухне Мария патне пынă чылай иудей,
Иисус тунă хăвата курса, Ăна ĕненме пуçланă.
46 Хăшĕсем тата фарисейсем патне кайса Иисус мĕн
туни çинчен каласа кăтартнă. 47 Вара аслă
священниксемпе фарисейсем хăйсен канашне
пухнă. «Мĕскер тумалла-ши? – канашланă вĕсем. –
Ку Çын нумай хăват кăтартать. 48 Каплипех
хăварсан Ăна пурте ĕненме пуçлĕç. Вара Рим
çыннисем килĕç те – пирĕн Турă Çуртне аркатĕç,
пирĕн халăха пусмăрлĕç». 49 Вĕсенчен пĕри, çав çул
аслă священник пулнă Каиафа, вĕсене каланă:
«Эсир ним те ăнланмастăр. 50 Пĕтĕм халăх
пĕтнинчен пĕри халăх ырлăхĕшĕн пĕтни
хамăршăнах лайăх пуласси пирки ăнланмастăр-
им?» 51 Çак сăмахсене вăл хăй ячĕпе каламан, çав
çул аслă священник пулнă май, Иисус халăхшăн
вилессе вăл малтанах каласа хунă. 52 Унтан та
ытларах, Иисус пĕр çак халăхшăн çеç мар,
сапаланса кайнă Турă ачисене пĕр çĕре
пуçтарассишĕн те вилессе Каиафа пророкла
систернĕ. 53 Çав кунран вара вĕсем Иисуса вĕлерме
калаçса татăлнă. 54 Çавна пула Иисус иудейсем
хушшинче пит курăнсах çÿремен. Вăл унтан пуш
хир çывăхĕнчи Ефраим хулине кайнă. Хăйĕн
вĕренекенĕсемпе пĕрле Иисус пĕр хушă çавăнта
пурăннă.
55 Иудейсен пасха уявĕ çывхарса килнĕ. Таврари
чылай халăх пасха умĕн тасалма Иерусалима пынă.
56 Çынсем, Иисуса шыраса, Турă Çуртĕнче тăнă
чухне пĕр-пĕринчен: «Мĕнле шухăшлатăр? Уява
килет-ши Вăл?» – тесе ыйтнă. 57 Аслă
священниксемпе фарисейсем вара Иисуса тытас
тесе çапла хушнă: «Вăл ăçтине пĕлекенсен тÿрех
пире систермелле».

### *Иисуса Вифанире çупа сĕрни*

(Мф. 26:6-13; Мк. 14:3-9)

12 Пасха çитесси ултă кун юлсан Иисус Хăй
вилĕмрен чĕртсе тăратнă Лазарь пурăнакан
Вифани ялне пынă. 2 Иисус пынă ятпа унта каçхи
апат хатĕрленĕ. Марфа хăнасене пăхнă. Иисуспа
ларакансем хушшинче Лазарь те пулнă. 3 Çавăнта
Мария пĕр кăкшăма тултарса нардран тунă таса,
хаклă йышши мирă илсе пынă. Унтан, Иисусăн
урине çупа сĕрсе, çÿçĕпе шăла-шăла илнĕ.
Пÿрчĕпех ырă мирă шăрши сарăлнă.
4 Вĕренекенĕсенчен пĕри, кайран Иисуса тытса
панă Иуда Искариот, Симон ывăлĕ , çавăнта пулнă.
Вăл çапла каланă: 5 «Ку çăва виç çĕр динарийлĕх
сутса укçине чухăнсене валеçсе памалла марччĕ-
и?» 6 Çакна вăл чухăнсемшĕн куляннипе мар, хăй
вăрă пулнăран каланă. Ун çумĕнче ĕненекенсене
пулăшмалли укçа арчи пулнă, унта янă укçасене вăл
хăй валли те илкеленĕ. 7 «Ан чăрмантарăр ăна, –
тенĕ çавăн чухне Иисус. – Вăл ку çăва Мана пытарас
кун валли усрать. 8 Чухăнсем сирĕн яланах пулĕç,
Эпĕ яланах пулас çук».
9 Иисус ăçтине пĕлнĕ иудейсем çавăнта йышлăн
пуçтарăннă. Вĕсем Иисуса кăна мар, Вăл вилĕмрен
чĕртнĕ Лазаре те курасшăн пулнă. 10 Вара аслă
священниксем Лазаре те вĕлерес тесе кавар тунă.
11 Мĕншĕн тесен Лазаре пула унта пыракан чылай
иудей Иисуса ĕненме пуçланă.

### *Иисус Христос Иерусалима кĕни*

(Мф. 21:1-11; Мк. 11:1-11; Лк. 19:28-40)

12 Тепĕр кунне пасха уявне пынă халăх хушшинче
Иерусалима Иисус та пырать текен хыпар сарăлнă.
13 Вара çынсем, пальма турачĕсем илсе, Ăна хирĕç
тухнă. «Осанна! Хуçа Турă ячĕпе килекен Израиль
Патшине мухтав!» – тесе кăшкăрнă вĕсем. 14 Иисус,
çамрăк ашак тупса, ун çине утланнă. Мĕншĕн тесен
Çырнинче çапла каланă: 15 «Эй, Сион хĕрĕ , ан хăра!
Акă санăн Патшу çамрăк ашак çине утланса килет».
16 Мĕн пулса иртнине çав самантра Иисусăн
вĕренекенĕсем те ăнланман. Каярахпа тин, Иисус
мухтава тухсан, вĕсем Çырнинче Ун çинчен çапла
каланине те, çав калани пурнăçланма хăйсем
Уншăн мĕн тунине те астуса илнĕ. 17 Иисус Лазаре
тупăклăхран чĕнсе кăларнине, епле ăна чĕртсе
тăратнине курнă-илтнĕ çынсем çавăн çинчен
ыттисене кала-кала кăтартнă. 18 Çав хăвата Иисус

тунине илтнӗрен ӗнтӗ халӑх Ӑна хирӗҫ тухнӑ.
19 «Куратӑр-и, нимӗн те тӑваймастпӑр, пӗтӗм тӗнче
Ун хыҫҫӑн каять», – тесе калаҫнӑ хӑйсем хушшинче
фарисейсем.

### Грексемпе тӗл пулни

20 Уява Турра пуҫҫапма пынисем хушшинче
грексем те пулнӑ. 21 Вӗсем Филипа ҫапла
тархасланӑ: «Ырӑ ҫыннӑмӑр! Пирӗн Иисуса курас
килет». Филипп Галилейӑри Вифсаида ҫынни
пулнӑ. 22 Хайхи Филипп ҫавӑн ҫинчен Андрея кайса
калать. Унтан вара вӗсем, Андрейпа иккӗшӗ, ҫавӑн
ҫинчен Иисуса Хӑйне пӗлтереҫҫӗ. 23 Иисус вӗсене
хирӗҫ ҫапла каланӑ: «Этем Ывӑлӗ мухтава тухас
вӑхӑт ҫитрӗ. 24 Чӑн-чӑнах калатӑп сире: тӑпрана
ӳксен шӑтман тулӑ пӗрчи пӗр пӗрчӗ халлӗнех
упранса юлать. Анчах та, хӑй пӗтсе шӑтса тухсан,
тулли пучах пултарать. 25 Кам хӑйӗн пурӑнӑҫне
юратать, ҫав ӑна пӗтерӗ. Кам ку тӗнчере хӑйӗн
пурӑнӑҫне юратмасть, ҫав ӑна ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ
валли упраса хӑварӗ. 26 Ман ирӗке тӑвакан Ман
хыҫҫӑн пытӑр; Эпӗ ӑҫта – тарҫӑм та ҫавӑнтах
пултӑр. Вара Ман ирӗке тӑвакана Аттем те
хисеплӗ».

### Иисус Хӑйӗн вилӗмӗ ҫинчен малтанах каласа хуни

27 «Халӗ Манӑн чунӑм пӑлханса кайрӗ. Мӗн калам-
ши? „Аттем, Мана ҫак саманта курассинчен хӑтар!“
– теес-и? Анчах та Эпӗ шӑпах ҫак самантшӑн килнӗ.
28 Эй, Аттем! Хӑвӑн ятна мухтава кӑлар!» Ҫав
вӑхӑтра ҫӳлтен: «Мухтава кӑлартӑм, татах та
чаплӑлатӑп!» – тенӗ сасӑ илтӗннӗ. 29 Унта тӑракан
халӑх та ҫав сасса илтнӗ. «Аслати пулчӗ пулас ку», –
тенӗ пӗрисем. «Ангел Унпа калаҫрӗ», – тенӗ
теприсем. 30 Ҫакнашкал калаҫнине илтсен Иисус
вӗсене ҫапла каланӑ: «Ку сасӑ Маншӑн мар,
сирӗншӗн пулчӗ! 31 Акӑ ӗнтӗ ҫак тӗнчене суд тӑвас
вӑхӑт ҫитрӗ. Ӗнтӗ ҫак тӗнчерен унӑн пуҫлӑхне
хӑваласа ярӗҫ. 32 Ҫӗр ҫинчен ҫӗкленсен, Эпӗ пурне
те Хам патӑма пуҫтарӑп!» 33 Ҫак сӑмахсемпе Иисус
Хӑй мӗнле вилӗмпе вилессе систернӗ. 34 «Христос
ӗмӗр-ӗмӗр пуласса эпир саккун кӗнекинченех
пӗлетпӗр, – тенӗ ҫынсем. – Епле тата Эсӗ „Этем
Ывӑлӗн ҫӗр ҫинчен ҫӗкленмелле“ тетӗн? Ҫав „Этем
Ывӑлӗ“ текенни кам вара Вӑл?» 35 Иисус ҫапла
каланӑ: «Ҫуттӑн сирӗнпе пуласси нумаях юлмарӗ.
Ҫутӑ пур чухне, сире тӗттӗм хупӑрличчен, ҫӳресе
юлӑр. Мӗншӗн тесен тӗттӗмре ҫӳрекен хӑй ӑҫта
кайнине те пӗлмест. 36 Ҫутӑ пур чухне ҫутта ӗненӗр,
вара ҫутӑ ачисем пулӑр!»
Ҫак сӑмахсене каласан Иисус вӗсем патӗнчен
кайса ҫухалнӑ.

### Иудейсем ӗненменнин сӑлтавӗ

37 Иисус иудейсене тем тӗрлӗ хӑват кӑтартнӑ
пулин те, вӗсем Ӑна ӗненмен. 38 Ҫапла вара Исаия
пророк калани ҫитнӗ. «Эй, Хуҫа Туррӑмӑр, – тенӗ
пулнӑ вӑл, – эпир каланине кам ӗненчӗ-ха? Хуҫа
Туррӑмӑрӑн хӑвачӗ кама курӑнчӗ?» 39 Вӗсем ӗненме
те пултарайман, ун пирки те Исаия пророках
каланӑ: 40 «Ҫак халӑхӑн куҫӗ суккӑрланнӑ, чун-чӗри
хытса ларнӑ. Ӗнтӗ вӗсен куҫӗ курмасть, чун-чӗри
туймасть, ҫавӑнпа та вӗсем, Вӑл пире сываттӑрччӗ
тесе, Ман енне ҫавӑрӑнмаҫҫӗ». 41 Ҫак сӑмахсене
Исаия пророк Ун ҫинчен каланӑ, ӑна Христос
мухтава тухасси курӑннӑ пулнӑ. 42 Ҫапах та Иисуса
пуҫлӑхсенчен те чылайӑшӗ ӗненме пуҫланӑ; анчах
вӗсем, фарисейсенчен хӑраса, синагогӑран уйӑрса
ярасран шиклениссе, хӑйсем ӗненнине палӑртман.
43 Мӗншӗн тесен вӗсем ҫын мухтанине Турӑ
мухтавӗнчен ытларах юратнӑ.

### Юлашки кун ҫитсессӗн Иисус сӑмахӗ айӑплӗ

44 Иисус кӑшкӑрсах каланӑ: «Мана ӗненекен Мана
мар, Мана кунта Яракана ӗненет. 45 Мана куракан
Мана кунта Яракана курать. 46 Эпӗ – ҫутӑ, Мана
ӗненекенсенчен пӗри те тӗттӗмлӗхре ан юлтӑр
тесе, Эпӗ тӗнчене килтӗм. 47 Кам та пулин Ман
сӑмахӑма илтсен те Мана ӗненмесен, Эпӗ ӑна
айӑпламастӑп. Мӗншӗн тесен Эпӗ тӗнчене
айӑпламашкӑн мар, ҫӑлмашкӑн килнӗ. 48 Мана
йышӑнман ҫынна, Ман сӑмахӑмсене хапӑл туман
ҫынна суд тӑвакан пур ӗнтӗ. Юлашки кун
ҫитсессӗн, ӑна Эпӗ каланӑ сӑмах айӑплӗ. 49 Мӗншӗн
тесен Эпӗ Хамран каламастӑп, мӗн каламаллине
тата мӗнле каламаллине Хама кунта яракан Аттем
хушнипе калатӑп. 50 Эпӗ пӗлетӗп: Унӑн пил-хушӑвӗ
– ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ. Ҫапла вара, Эпӗ кирек мӗн
каласан та Аттем сӑмахне ҫеҫ калатӑп».

### Вӗренекенӗсен урисене ҫуни

13 Пасха уявӗ ҫывхарса килнӗ. Ку тӗнчерен
Ашшӗ патне каяс вӑхӑчӗ ҫитсе пынине Иисус
пӗлнӗ. Ку тӗнчери Хӑй хыҫҫӑн пыракансене Вӑл
савнӑ, каяс умӗн вара Хӑйӗн тулли юратулӑхне
пытарас темен. 2 Каҫхине Иисуспа вӗренекенӗсем
апат ҫиме ларнӑ. Ҫавӑн чухне шуйттан Симон
ывӑлӗн Иуда Искариотӑн чӗрине Иисуса сутас
шухӑш кӗртнӗ. 3 Ашшӗ пӗтӗмпех Хӑйӗн аллине
панине тата Хӑй Турӑ патӗнчен анса Турӑ патне
каясса Иисус пӗлнӗ. 4 Ҫавӑнпа Вӑл сӗтел
хушшинчен тухнӑ та, ҫиелти тумне хывса, пилӗкне
ал шӑлли ҫыхнӑ. 5 Унтан ҫӑвӑнмалли савӑта шыв
янӑ та, вӗренекенӗсен урисене ҫуса, пилӗкне ҫыхнӑ
ал шӑллипе шӑла пуҫланӑ. 6 Петр текен Симон
патне ҫитсен, лешӗ тӗлӗнсе кайнипе ҫапла каланӑ:
«Хуҫамӑр! Эсӗ ман урана ҫӑвасшӑн-и?» 7 «Эпӗ мӗн
тунине эсӗ халӗ пӗлейместӗн-ха, кайран ӑнланса
илӗн», – тесе хуравланӑ Иисус. 8 «Ӗмӗрне те
ҫутармастӑп!» – хирӗҫленӗ Ӑна Петр. «Эпӗ сан уруна
ҫумасан, эсӗ Манпа пӗрлӗхлӗ пулаймӑн», – тенӗ ӑна
Иисус. 9 «Хуҫамӑр! Эппин урама кӑна мар, аллӑмпа
пуҫӑма та ҫуса яр», – тенӗ Ӑна Петр текен Симон.
10 «Ҫӑвӑннӑ ҫын ахалех таса, – тенӗ ӑна Иисус, –

çавăнпа унăнне урине кăна çумалла. Эсир те таса,
анчах пурте мар». 11 Пурте мар тесе Вăл Хăйне
тытса паракана малтанах пĕлнĕрен каланă.
12 Вĕренекенĕсен урисене çусан, Хăйĕн тумне
тăхăнса, Вăл каллех сĕтел хушшине ларнă. «Эпĕ
сирĕншĕн мĕн тунине ăнлантăр-и? – ыйтнă вара
Вăл. 13 – Эсир Мана Вĕрентекен тетĕр, Хуçамăр
тетĕр. Тĕрĕсех калатăр, Эпĕ, чăнах та, сирĕн
Вĕрентекенĕр тата Хуçăр. 14 Çапла вара, Эпĕ, сирĕн
Хуçăр тата Вĕрентекенĕр, урăрсене çурăм пулсан,
сирĕн те пĕр-пĕрин урисене çумалла. 15 Сирĕн те
Ман пекех тумалла тесе Эпĕ сире тĕслĕх кăтартрăм.
16 Чăн-чăнах калатăп сире: чура хăй хуçинчен аслă
мар, ĕçпе янă çын та хăйне яраканнинчен аслă мар.
17 Çаксене пĕлсе пурнăçласа тăрсан эсир телейлĕ
пулăр. 18 Сирĕн çинчен пурин пирки те каламастăп.
Хам суйласа илнисене Эпĕ пĕлетĕп. Çырнинче
„Манпа пĕрле çăкăр çиекенех Мана хирĕç тăчĕ“
тесе калани пурнăçлантăр ĕнтĕ. 19 Ĕçĕ пулса
иртиччченех Эпĕ ун çинчен ахальтен каламастăп.
Ĕçĕ пурнăçлансан Эпĕ Христос иккенне ĕненччĕр
тесе калатăп. 20 Чăн-чăнах калатăп сире: кам Эпĕ
янă çынна йышăнать, çав Мана хапăл тăвать. Кам
Мана хапăл тăвать, çав Мана кунта Яракана
йышăнать».

*Хăйне Иуда тытса парасси çинчен калани*
(Мф. 26:20-25; Мк. 14:17-21; Лк. 22:21-23)

21 Çак сăмахсене каласан Иисусăн кăмăлĕ хуçăлнă.
«Чăн-чăнах калатăп сире, – уççăнах пĕлтернĕ Вăл, –
сирĕнтен пĕри Мана тытса парĕ». 22 Çавăн чухне
вĕренекенĕсем, Вăл кам çинчен каланине
ăнкараймасăр, пĕр-пĕрин çине кăн-кан пăхса илнĕ.
23 Иисусăн вĕренекенĕсенчен пĕри вара, Вăл
юратни, Унăн хулпуççийĕ çумне сĕвеннĕ. 24 Петр
текен Симон, Вăл кам çинчен каланине ыйтса пĕл-
ха тесе, ăна аллисемпе паллă кăтартнă. 25 Лешĕ
вара Иисус çумнерех çыпăçса: «Хуçамăр! Сутаканĕ
хăшĕ пулĕ?» – тесе ыйтнă. 26 «Çăкăр татăкне кама
пуçса парăп, çавă», – тавăрнă Иисус. Унтан Вăл
çăкăр татăкне пуçса Симон ывăлне Иуда Искариота
панă. 27 Çав çăкăр татăкне илнĕ хыççăнах Иуда
ăшне шуйттан кĕнĕ. «Тума пуçланине хăвăртрах
туса пĕтер», – тенĕ ăна Иисус. 28 Вăл Иудăна
мĕншĕн çапла каланине сĕтел хушшинче
ларакансенчен пĕри те ăнланса илеймен. 29 Укçа
арчи Иудăра пулнăран хăш-пĕр вĕренекенĕсем:
«Иисус ăна уяв тĕлне хамăра мĕн кирлине илме
хушать пулĕ. Е ыйткалакансене мĕн те пулин пама
калать-ши?» – тесе шухăшланă. 30 Çăкăр татăкне
илсенех Иуда тăрса тухса кайнă. Вăхăчĕ ĕнтĕ
çĕрлене кайнă.

### Çĕнĕ пил-хушу

31 Иуда тухса кайсан Иисус каланă: «Паянтан Этем
Ывăлĕ мухтава тухрĕ, Ун урлă Турă та мухтава
тухрĕ. 32 Турă Хăйĕн Ывăлĕ урлă мухтава тухрĕ
пулсан, Турă та Хăй урлă Ывăлне мухтава кăларĕ,
часах мухтава кăларĕ. 33 Ачамсем! Манăн сирĕнпе
пуласси нумай мар. Кайран эсир Мана шырама
пуçлăр. Иудейсене каланинех халĕ сире калатăп:
„Эпĕ каяс çĕре эсир çитеймĕр“. 34 Эпĕ сире çĕнĕ
пил-хушу паратăп: пĕр-пĕрне юратăр. Пĕр-пĕрне
Эпĕ сире юратнă пекех юратăр. 35 Эсир Манăн
вĕренекенĕмсем пулнине сирĕн хушшăрти
юратулăхран пĕлĕç».

*Петр тунасса Иисус малтанах калани*
(Мф. 26:31-35; Мк. 14:27-31; Лк. 22:31-34)

36 «Хуçамăр! Эсĕ ăçта каяс тетĕн?» – ыйтнă Петр
текен Симон Иисусран. «Эпĕ каяс çĕре эсĕ халĕ
пыраймăн, – тенĕ Иисус, – анчах та каярахпа Ман
хыçăмранах пырăн». 37 «Хуçамăр! Мĕншĕн мана
халĕ Сан хыçăнтан пыма юрамасть? Эпĕ Саншăн
чунăма пама та хатĕр!» – тенĕ Ăна Петр. 38 Иисус
вара ăна çапла каланă: «Чунăма пама та хатĕр
тетĕн-и? Чăн-чăнах калатăп сана: автан
авăтиччченех эсĕ виçĕ хут Мана пĕлмĕш пулăн».

### Иисус – çул та, чăнлăх та, чĕрĕлĕх те

14 «Сирĕн кăмăлăр ан пăсăлтăр. Турра ĕненĕр,
Мана та ĕненĕр. 2 Аттем çуртĕнче вырăн
нумай. Сахал пулсан: „Сирĕн валли вырăн
хатĕрлеме каятăп. 3 Унта кайса сирĕн валли вырăн
хатĕрлесен каллех таврăнăп. Вара сире, Хампа
пĕрле пулччăр тесе, Хам патăма илĕп“, – тенĕ
пулăттăм. 4 Эпĕ ăçта каяссине те, унта каймалли
çулне те эсир пĕлетĕр», – тенĕ Иисус. 5 «Хуçамăр!
Эсĕ ăçта каяссине эпир пĕлместпĕр, – тенĕ Ăна
Фома, – апла çулне пирĕн мĕнле пĕлес?» 6 «Çул та,
чăнлăх та, чĕрĕлĕх те – Эпĕ, – тавăрнă ăна Иисус. –
Ман урлă каймасан Аттем патне никам та çитеймĕ.
7 Эсир Мана пĕлнĕ пулсан Аттеме те пĕлĕттĕр.
Паянтан вара эсир Ăна пĕлтĕр кăна мар, куртăр та».
8 «Хуçамăр! Аттемĕре кăтартсам, пире урăх ним те
кирлĕ мар», – тенĕ Ăна Филипп. 9 Иисус ăна çапла
каланă: «Эх, Филипп, Эпĕ сирĕнпе мĕн чухлĕ
пултăм, çапах та эсĕ Мана пĕлейместĕн-и? Мана
курни Аттене те курнă. Мĕншĕн-ха эсĕ тата:
„Аттемĕре кăтартсам“, – тетĕн? 10 Эпĕ Аттемре,
Аттем Манра пулнине ĕненместĕн-им? Сире
калакан сăмахсене Эпĕ Хамран каламастăп. Мĕн
тăвассине Манри Аттем Хăй тăвать. 11 Эпĕ Аттемре
тенине те, Аттем Манра тенине те ĕненĕр.
Каланине ĕненмесен ĕçĕмсене курса ĕненĕр.
12 Чăн-чăнах калатăп сире: Мана ĕненекен çын Эпĕ
тăвакан ĕçех тăвĕ, унтан та ытларах тума пултарĕ,
мĕншĕн тесен Эпĕ Аттем патне каятăп. 13 Эсир Ман
ятăмпа Аттемрен кирек мĕн ыйтсан та, Ывăлĕ урлă
Ашшĕ мухтавлă пултăр тесе, эсир мĕн ыйтнине
пурнăçлăп. 14 Ман ятăмпа мĕн те пулин ыйтсан та
Эпĕ çавна пурнăçлăп».

### Святой Сывлăш çинчен калани

15 «Мана юрататăр пулсан Манăн пил-хушусене
пăхăнса пурăнăр. 16 Эпĕ Аттеме тархаслăп та, Вăл
сирĕн хута кĕме тепĕр Лăплантаракана ярĕ. Вăл
ĕмĕр-ĕмĕр сирĕнпе пĕрле пулĕ. 17 Çав

Лăплантаракан – чăнлăх Сывлăшĕ. Тĕнче Ăна
курмасть те, пĕлмест те, çавăнпа Ăна
йышăнаймасть. Эсир вара Ăна пĕлетĕр, мĕншĕн
тесен Вăл халĕ те сирĕнпе, малашне те сирĕнтех
пулĕ. 18 Сире тăлăха хăвармăп, Эпĕ каллех килĕп.
19 Тĕнче Мана курми пуласси нумаях юлмарĕ. Эсир
вара Мана яланах курса тăракансем пулăр; мĕншĕн
тесен Эпĕ пурăнатăп, эсир те пурăнăр. 20 Эпĕ
Аттемрине, эсир Манрине, Эпĕ сирĕн чунăртине
эсир çав кун пĕлĕр. 21 Кам Ман пил-хушусене асра
тытса пурнăçласа тăрать, çав Мана юратать. Мана
юратакана Аттем те юратĕ. Мана савакана юратса,
Эпĕ ун патне хамах пырăп». 22 Вара Иуда –
Искариот мар, урăххи – Унран ыйтать: «Хуçамăр!
Мĕншĕн Эсĕ Хăвна тĕнчене мар, пире
кăтартасшăн?» 23 Иисус ăна хирĕç çапла каланă:
«Мана юратакан Эпĕ вĕрентнĕ пек пурăнĕ; ăна
Аттем те юратĕ. Вара Эпир Аттепе ун патне
пырăпăр та унпа пĕрле пулăпăр. 24 Мана
юратманни Ман сăмаха пурнăçламасть; эсир
илтекен сăмах вара Манăн мар, Мана кунта яракан
Аттемĕн. 25 Çакна Эпĕ сире хăвăрпа пĕрле чух калас
терĕм. 26 Ман ятăмпа Аттем сире Лăплантаракан
Сывлăш ярса парĕ. Çав Святой Сывлăш Эпĕ мĕн
каланине сире пĕтĕмпех ăнлантарса парĕ,
пĕтĕмпех аса илтерĕ.
27 Эпĕ сире канăçлăх парса хăваратăп, Хамăн
канăçлăхăма сире паратăп. Анчах та вăл çак
тĕнчери канăçлăх мар. Аптăраса ан ӳкĕр, ан хăрăр!
28 „Сирĕн патăртан кайăп та каллех килĕп“ тесе
каларăм ĕнтĕ сире. Эсир ăна илтрĕр. Эсир Мана
юрататăр пулсан, Эпĕ „Аттем патне каятăп“
тенĕшĕн сирĕн савăнмалла. Мĕншĕн тесен Аттем
Манран хăватлăрах. 29 Çапла вара, мĕн калани
пурнăçлансан ĕненчĕр тесе, Эпĕ сире ун çинчен
малтанах пĕлтерес терĕм. 30 Ĕнтĕ Манăн сирĕнпе
калаçасси нумаях юлмарĕ, мĕншĕн тесен çак
тĕнчен пуçлăхĕ килет. Вăл Манпа хуçаланаймĕ!
31 Анчах та тĕнчен Эпĕ Аттеме юратнине
пĕлмеллех. Çавăнпа та Эпĕ Аттем мĕн хушнине
пĕтĕмпех тăватăп. Ĕнтĕ тăрар та кунтан каяр».

## Христос – чăн-чăн иçĕм çырли авăрĕ

15 Иисус тата çапла каланă: «Эпĕ – чăн-чăн иçĕм
çырли авăрĕ, Аттем вара – пахчаçă. 2 Çырла
туман туратăмсене Вăл касса пăрахать. Çырла
тăвакан туратсене Вăл, çырли тата нумайрах
пултăр тесе, иртсех, тасатсах тăрать. 3 Эсир ĕнтĕ
ӳкĕтлесе вĕрентнĕ Манăн сăмахăмпа тасалтăр.
4 Эсир Манра пулăр, Эпĕ сирĕнте пулам. Çырла
авăрĕнчен уйăрнă турат çырла тăваймĕ, çавăн
пекех эсир те, Манра пулмасан, çимĕç параймăр.
5 Эпĕ – çырла авăрĕ, эсир – туратсем. Эпĕ унра
пулнă пекех, кам та кам Манра, çавă нумай çимĕç
парать; мĕншĕн тесен Мансăр эсир нимĕн те
тăваймăр. 6 Кам Манра мар, çавна турата касса
пăрахнă пек касса пăрахĕç те, вăл типсе кайĕ. Типĕ
туратсене вара пуçтарса вута пăрахаççĕ те, вĕсем
çунса каяççĕ. 7 Эсир Манра пулсан Ман сăмахăмсем
те сирĕн ăшăрта пулĕç. Вара мĕн ыйтас тенине
ыйтăр, ыйтнине сире парĕç. 8 Нумай çимĕç кӳнипе
эсир Аттеме мухтава кăларăр, çапла майпа эсир
Манăн вĕренекенĕмсем пулăр.
9 Эпĕ сире Хама Аттем юратнă пек юратрăм.
Манăн юратулăхăмпа пурăнăр. 10 Эпĕ Аттем
хушнине туса тăнăран Унăн юратулăхĕпе
пурăнатăп. Эпĕ хушнине туса тăрсан эсир те Ман
юратулăхăмпа пурăнăр. 11 Çакна Эпĕ савăнăçăм
сирĕн савăнăçăр пултăр тесе, çав савăнăç тулли
пултăр тесе каларăм. 12 „Эпĕ сире юратнă пекех,
эсир те пĕр-пĕрне юратăр“, – тесе пил-хушу
паратăп сире. 13 Хăйĕн тусĕшĕн чунне панинчен
ытларах юратулăх пулма пултараймасть. 14 Эпĕ
хушнине туса тăрсан эсир Манăн тусăмсем пулатăр.
15 Чура хăйĕн хуçи мĕн тунине пĕлмест, çавăнпа
Эпĕ ĕнтĕ сире чурамсем теместĕп. Хам Аттемрен
мĕн илтнине Эпĕ сире пĕтĕмпех каласа патăм,
çавăнпа сире тусăмсем тетĕп. 16 Эсир Мана суйласа
илмен, Эпĕ сире суйласа илтĕм. Эпĕ сире, тĕнчене
тухса, пĕтми çимĕç паччăр тесе суйларăм. Вара
эсир Аттемрен Ман ятăмпа кирек мĕн ыйтсан та,
Вăл сире парĕ. 17 Пĕр-пĕрне юратса пурăнма пил-
хушу паратăп сире».

## Тĕнче курайманни

18 «Тĕнче сире кураймасть пулсан, вăл сирĕнтен те
маларах Мана курайманнине пĕлсе тăрăр. 19 Эсир
çак тĕнче çыннисем пулнă пулсан, хăйĕн
çыннисене тĕнче юратĕччĕ. Эпĕ сире тĕнчерен
суйласа илсе уйăрнă пирки эсир çак тĕнче
çыннисем мар. Çавăнпа та тĕнче сире кураймасть.
20 „Чура хăйĕн хуçинчен аслă мар“, – тенĕччĕ Эпĕ
сире. Çав сăмахсене асра тытăр. Мана хĕсĕрлерĕç
пулсан, сире те хĕсĕрлĕç. Манăн сăмахăма упраса
усрарĕç пулсан, сирĕнне те упрĕç. 21 Çавна сире
йăлтах Ман ятăмшăн тăвĕç, мĕншĕн тесен тĕнче
Мана кунта Яракана пĕлмест. 22 Эпĕ тĕнчене
килмен пулсан, каламан пулсан, вĕсем хăйсем
çылăхлине пĕлмĕччĕç. Халĕ вĕсем,
çылăхлăскерсем, хăйсене тӳрре кăлараймĕç. 23 Кам
Мана кураймасть, вăл Аттеме те кураймасть. 24 Эпĕ
вĕсене никам тăвайман ĕçсене туса кăтартман
пулсан вĕсем хăйсем çылăхлине пĕлмĕччĕç. Халĕ
вĕсем Эп тунă ĕçсене курчĕç, пурĕпĕрех Мана та,
Аттеме те кураймаççĕ. 25 Вĕсен саккунĕнче „Мана
сăлтавсăрах кураймаççĕ“ тесе çырни пурнăçланма
çапла пулмалла та. 26 Эпĕ Аттемрен анакан чăнлăх
Сывлăшне сирĕн патăра ярăп. Çав Лăплантаракан
Сывлăш сире Ман çинчен çирĕплетсе пĕлтерекенĕ
пулĕ. 27 Эсир те Ман çинчен çирĕплетсе
пĕлтерекенсем пулăр, мĕншĕн тесен эсир мĕн
пуçламăшĕнченех Манпа пĕрле».

16 «Çакна Эпĕ сире ĕненӳре ан иккĕленчĕр
тесе каларăм. 2 Сире синагогăсенчен
хăваласа кăларĕç. Турра юрăхлă ĕç тăватпăр тесе
шухăшласах сире вĕлерĕç. Çав вăхăт çывхарать те

ĕнтĕ. 3 Аттеме те, Мана та пĕлменрен вĕсем çапла
хăтланĕç. 4 Çакна Эпĕ сире çав вăхăт çитсен Ман
сăмахăмсене аса илчĕр тесе каларăм. Хам
сирĕнпе пулнă пирки маларах ун çинчен
пĕлтермерĕм».

### Святой Сывлăш килесси

5 «Халĕ ĕнтĕ Эпĕ Хама кунта Яракан патне каятăп.
Анчах сирĕнтен пĕри те: „Ăçта каятăн?“ – тесе
ыйтмасть. 6 Çакна каланăран эсир хуйха ӳкнине
куратăп. 7 Анчах та Эпĕ чăннине калатăп: Эпĕ
кайсан сире лайăхрах пулĕ. Эпĕ каяс мар пулсан
сирĕн патăра Лăплантаракан килмĕ. Кайсассăн
вара – Эпĕ ăна сирĕн патăра ярăп. 8 Лăплантаракан
Сывлăш килĕ те – çылăх çинчен, тĕрĕслĕх çинчен,
суд çинчен тĕнче тĕрĕс мар шутланине кăтартса
парĕ. 9 Сывлăш çынсем çылăхлă пулнине кăтартса
парĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Мана ĕненмеççĕ. 10 Эпĕ
тӳрĕ пулнине те Сывлăш кăтартса парĕ, мĕншĕн
тесен Эпĕ Аттем патне каятăп, эсир Мана урăх
кураяс çук. 11 Турă сучĕ пуррине те Сывлăш кăтартса
парĕ, мĕншĕн тесен çак тĕнчен пуçлăхне айăпланă
ĕнтĕ.
12 Калас сăмахăм татах нумай, анчах та эсир халĕ
пурне те ăнланаймăр. 13 Чăнлăх çулне эсир чăнлăх
Сывлăшĕ килсен çеç тупăр. Мĕншĕн тесен Вăл Хăй
ячĕпе мар, мĕн илтнине калĕ, пуласлăх çинчен
пĕлтерĕ. 14 Сывлăш Мана мухтава кăларĕ, мĕншĕн
тесен сире мĕн пĕлтерессине Вăл Манран илĕ.
15 Аттемĕн мĕн пурри пĕтĕмпех Манăн. „Манран
мĕн илтнине сире Сывлăш пĕлтерĕ“ тесе çавăнпа
каларăм та».

### Хуйхă савăнăçпа ылмашĕ

16 «Кĕçех ĕнтĕ эсир Мана кураймăр. Тепĕртакран
Мана каллех курăр, мĕншĕн тесен Эпĕ Аттем патне
каятăп ». 17 Çавăн чухне хăш-пĕр вĕренекенĕсем
пĕр-пĕрне каланă: «Мĕн тесшĕн ара Вăл? „Кĕçех
ĕнтĕ эсир Мана кураймăр. Тепĕртакран Мана
каллех курăр“, – тет. Тата: „Эпĕ Аттем патне каятăп“
– тет. 18 „Кĕçех ĕнтĕ“ тенине тата мĕнле
ăнланмалла-ши? Тем калать Вăл, ним те
ăнланмастпăр», – тенĕ вара вĕсем. 19 Хăйĕнчен мĕн
ыйтасшăн пулнине пĕлсе Иисус çапла каланă:
«Кĕçех ĕнтĕ эсир Мана кураймăр, тепĕртакран
каллех курăр, терĕм Эпĕ. Эсир пĕр-пĕринпе çавăн
çинчен калаçатăр-и? 20 Чăн-чăнах калатăп сире:
эсир ĕсĕклесе йĕрĕр, ӳлесе макăрăр, анчах та тĕнче
савăнĕ. Эсир хуйха ӳкĕр, анчах та сирĕн хуйхăр
савăнăçпа ылмашĕ. 21 Ача çуратнă чухне хĕрарăм
тертленет, мĕншĕн тесессĕн унăн асап вăхăчĕ
çитнĕ. Анчах та, ачине çуратсан, тĕнчене çын
килнишĕн савăннипе вăл терчĕ çинчен манса
каять. 22 Çавнашкалах эсир те халĕ тертленетĕр. Акă
Эпĕ тепĕртакран сире курăп та, сирĕн чĕрĕрсем
савăнăçпа тулĕç. Çав савăнăçа сирĕнтен никам та
туртса илеймĕ. 23 Çав кун вара эсир Манран нимĕн
çинчен те ыйтмăр. Чăн-чăнах калатăп сире: Ман
ятăмпа Аттемрен кирек мĕн ыйтсан та, Вăл сире
парĕ. 24 Халиччен эсир Ман ятăмпа нимĕн те
ыйтманччĕ-ха. Ыйтăр – савăнăçăр тулли пултăр
тесе сире мĕн ыйтнине парĕç».

### Христос тĕнчене çĕнтерни

25 «Халиччен Эпĕ сире ытарлăн калаттăм. Аттем
çинчен уççăн калас вăхăт, ытарлăхсем калама
пăрахас вăхăт çитсе пырать ĕнтĕ. 26 Çав кун эсир
Аттемрен Ман ятăмпа ыйтăр. Сирĕншĕн Аттеме
тархаслăп теместĕп, 27 мĕншĕн тесен эсир Мана
юратнăран, Эпĕ Турă патĕнчен килнине ĕненнĕрен
сире Аттем Хăй те юратать. 28 Эпĕ, Аттем патĕнчен
тухса, тĕнчене килтĕм. Халĕ вара, тĕнчене хăварса,
каллех Аттем патне каятăп». 29 «Акă Эсĕ халĕ
ытарлăн мар, уççăн калатăн, – тенĕ Иисуса
вĕренекенĕсем. 30 – Ĕнтĕ эпир Эсĕ йăлтах пĕлсе
тăнине куратпăр. Эпир çăвар уçичченех Эсĕ
Хăвăнтан мĕн ыйтасса пĕлетĕн. Çавăнпа Эсĕ Турă
патĕнчен килнине ĕненетпĕр». 31 «Тинех ĕненетĕр-
и? – тенĕ вĕсене Иисус. 32 – Акă эсир Мана пĕччен
хăварса тĕрлĕ еннелле саланас вăхăт çывхарать,
çав вăхăт çитрĕ те ĕнтĕ. Анчах та Аттем Манпа
пулнăран Эпĕ пĕччен мар. 33 Çакна Эпĕ сире чун
канăçлăхне Манра тупăр тесе каларăм. Ку тĕнче
сирĕншĕн хуйхă-суйхăллă пулĕ, çапах çирĕп
кăмăллă пулăр: Эпĕ тĕнчене çĕнтертĕм».

### Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсемшĕн кĕлтуни

17 Çак сăмахсем хыççăн Иисус çӳлелле пăхнă та
çапла каланă: «Эй, Аттем! Вăхăт çитрĕ ĕнтĕ:
Хăвăн Ывăлу Сана мухтава кăлартăр тесе Ывăлна
мухтава кăлар. 2 Эсĕ Ăна пур этемпе те пуç пулма
ирĕк панă пекех, Вăл та Эсĕ шанса панисене пурне
те ĕмĕрлĕх пурăнăç парĕ. 3 Сана, пĕртен-пĕр чăн
Турра, пĕлни тата Ху кунта янă Иисус Христоса
пĕлни ĕмĕрлĕх пурăнăç пулать те ĕнтĕ. 4 Эпĕ çĕр
çинче Сана мухтава кăлартăм, Эсĕ Мана тума
хушнă ĕçе пурнăçларăм. 5 Эй, Аттем! Тĕнче
пуличченех Сан патăнта Эпĕ мухтавлăччĕ. Халĕ Эсĕ
Мана татах Хăвăн патăнти мухтавлăхна кăтарт.
6 Эсĕ çак тĕнчери çынсене Мана патăн. Эпĕ вĕсене
Санăн ятна пĕлтертĕм. Вĕсем Санăн çыннусемччĕ,
Эсĕ вĕсене Мана патăн. Вĕсем Санăн сăмахна
упраса хăварчĕç. 7 Эсĕ Мана пани пĕтĕмпех Санăн
иккенне халĕ ĕнтĕ вĕсем ăнланса илчĕç. 8 Мĕншĕн
тесен Эсĕ Мана панă сăмахсене Эпĕ вĕсене патăм.
Çав сăмахсене вĕсем йышăнчĕç. Вара Эпĕ Сан
патăнтан килнине чăнласах ăнланчĕç, Мана Эсĕ
янине ĕненчĕç. 9 Эпĕ вĕсемшĕн тархаслатăп. Пĕтĕм
тĕнчешĕн мар, Эсĕ Мана панисемшĕн кĕлтăватăп,
мĕншĕн тесен вĕсем – Санăн. 10 Манăн мĕн пурри
те – Санăн. Санăнни те – Манăн. Вĕсене пула Эпĕ
мухтавлă пултăм. 11 Эпĕ ĕнтĕ тĕнчере мар, вĕсем
вара тĕнчерех-ха. Эпĕ Сан патна пыма тухатăп. Эй,
Святой Аттем! Вĕсем те Пирĕн пекех пĕр пулччăр

тесе Эсĕ Мана панă Хăвăн ятупа вĕсене
упрасамччĕ. 12 Эпĕ вĕсемпе пĕрле тĕнчере чухне
Эсĕ панисенчен пĕри те вилмерĕ. Ҫырнинчи
пурнăҫлантăр тесе, пĕтеслĕх ывăлĕсĕр пуҫне,
ыттисене Эпĕ пурне те Санăн ятупа упраса
хăвартăм. 13 Халĕ ĕнтĕ Сан патна пыратăп. Манăн
тулли савăнăҫăмпа вĕсен чĕрисем тулччăр тесе
ҫакна Эпĕ тĕнчере чухне калатăп. 14 Эпĕ Сан
сăмахна вĕсене каласа патăм. Вĕсем те Ман пекех
ку тĕнче ҫыннисем пулманран тĕнче вĕсене
курайми пулчĕ. 15 Эсĕ вĕсене ку тĕнчерен илсемччĕ
тесе кĕлтумастăп, усал-тĕселтен сыхласа
хăварсамччĕ тесе кĕлтăватăп. 16 Вĕсем те Ман пекех
ку тĕнче ҫыннисем мар. 17 Вĕсене Хăвăн чăнлăхупа
сăвапласа тасат: Санăн сăмаху – чăнлăх. 18 Эсĕ Мана
тĕнчене янă пекех, Эпĕ те вĕсене тĕнчене ятăм.
19 Вĕсем те Санăн чăнлăхупа тасалччăр тесе Хама
Эпĕ вĕсемшĕн паратăп. 20 Вĕсемшĕн анчах
кĕлтумастăп. Вĕсен сăмахне итлесе Мана ĕненекен
кашни ҫыншăн кĕлтăватăп. 21 Пурте пĕр пулччăр.
Эй, Аттем, Эсĕ Манра пулнă пек, Эпĕ Санра пулнă
пек, вĕсем те Пирĕнте пĕр пулччăр тесе, Мана Эсĕ
янине тĕнче ĕнентĕр тесе кĕлтăватăп. 22 Эпир пĕр
пулнă пек, вĕсем те пĕр пулччăр тесе, Эсĕ Мана
панă мухтава вĕсене патăм. 23 Эпĕ – вĕсенче, Эсĕ те
– Манра. Вĕсем те чăннипех пĕр пулччăр. Мана Эсĕ
янине тата Эсĕ вĕсене Мана юратнă пекех
юратнине тĕнче пĕлтĕр. 24 Эй, Аттем! Эсĕ Мана
панисем те Эпĕ ăҫта, ҫавăнта Манпа пĕрлех
пулччăр. Эсĕ Мана тĕнчене пултаричченех юратса
панă мухтава вĕсем те курччăр. 25 Эй, тӳрĕлĕхлĕ
Аттем! Тĕнче Сана пĕлмерĕ, анчах та Эпĕ Сана
пĕлтĕм. Кусем те Мана Эсĕ янине пĕлчĕҫ. 26 Вара
Эпĕ вĕсене Санăн ятна пĕлтертĕм. Эсĕ Мана
юратни те вĕсенче пултăр тесе, ҫапла майпа Эпĕ те
вĕсенче пулам тесе, малашне те вĕсене пĕлтерсех
тăрăп».

*Иисуса тытни*

(Мф. 26:47-56; Мк. 14:43-50; Лк. 22:47-53)

18 Кĕлĕ туса пĕтерсен Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсемпе Кедрон айлăмĕн тепĕр
енне кайнă, унта сад пулнă. Иисус
вĕренекенĕсемпе пĕрле ҫав сада кĕнĕ. 2 Иисус унта
Хăйĕн вĕренекенĕсемпе час-часах ҫӳрекеленĕ,
ҫавăнпа вăл вырăн пирки Ăна тытса паракан Иуда
та пĕлнĕ. 3 Ҫапла вара, Иуда пĕр ушкăн салтака тата
аслă священниксемпе фарисейсен тарҫисене ертсе
унта пынă. Пурте вĕсем хунарсемпе ҫутаткăҫсем
йăтнă, хĕҫсемпе пулнă. 4 Иисус, Хăйĕнпе мĕн
пуласса йăлтах пĕлсе тăрса, вĕсене хирĕҫ тухнă та
ҫапла каланă: «Кама шыратăр?» 5 «Назорей
Иисуса», – тенĕ лешсем. «Эпĕ-ха Вăл», – тенĕ Иисус.
Ăна тытса паракан Иуда та ҫав ушкăнрах тăнă.
6 Иисус «Эпĕ-ха Вăл» тенине илтсессĕнех вĕсем
каялла чакнă та, ӳксе, ҫĕр ҫумне лăпчăннă. 7 Вăл
вĕсенчен каллех: «Кама шыратăр?» – тесе ыйтнă.
«Назорей Иисуса», – тенĕ лешсем. 8 «Эпĕ-ха Вăл
тесе каларăм-ҫке сире, – тавăрнă Иисус. – Мана
шыратăр пулсан эппин ыттисене ан тивĕр, вĕсене
кайма ирĕк парăр». 9 Ҫапла майпа „Эсĕ Мана
панисене Эпĕ пурне те упраса хăвартăм“ тесе
маларах калани пурнăҫланнă. 10 Петр текен
Симонăн хĕҫ пулнă. Вăл хĕҫне туртса кăларнă та
аслă священник чури ҫине сулса ярса унăн сылтăм
хăлхине касса татнă. Ҫав чура Малх ятлă пулнă.
11 «Хĕҫне йĕннине чиксе хур, – тенĕ Иисус Петра. –
Аттем панă асап куркине Манăн ĕҫмелле марччĕ-
им вара?»
12 Унтан салтаксемпе пинпӳ тата иудейсен
тарҫисем Иисуса тытса ҫыхнă. 13 Ăна малтанах Анна
патне илсе пынă. Анна вăл ҫав ҫул аслă
священникра ларакан Каиафăн хуньăшĕ пулнă.
14 «Халăх ырлăхĕшĕн пĕр ҫын пĕтни лайăххах» тесе
иудейсене маларах канаш параканни шăпах ҫав
Каиафа пулнă.

*Петр Иисуса пĕлмĕш пулни*

(Мф. 26:69-70; Мк. 14:66-68; Лк. 22:55-57)

15 Иисус хыҫĕнчен Петр текен Симонпа тепĕр
вĕренекенĕ пынă. Ҫав вĕренекенне аслă
священник палланă, ҫавăнпа вăл Иисуспа пĕрле
аслă священник картишне кĕме пултарнă. 16 Петр
тулта, хапха умĕнче, тăнă. Кăштахран аслă
священник палланă хайхи вĕренекен тухнă та,
хапха асăрхаса тăракан хĕрарăмпа калаҫса илсе,
Петра та шала кĕртнĕ. 17 Вара ҫав хĕрарăм чура
Петра каланă: «Эсĕ те Ҫак Ҫыннăн вĕренекенĕ мар-
и-ха?» «Ҫу-ук», – тавăрнă Петр. 18 Ҫанталăк сивĕ
пулнăран тарҫăсемпе чурасем вут хурса ăшăнса
тăнă. Петр та вĕсемпе пĕрле пулнă.

*Аслă священник Иисуса тĕпчени*

(Мф. 26:59-66; Мк. 14:55-64; Лк. 22:66-71)

19 Аслă священник Иисусран Унăн вĕренекенĕсем
ҫинчен, Унăн вĕрентĕвĕ ҫинчен ыйтнă. 20 «Эпĕ
пĕтĕм халăха уҫҫăнах вĕрентрĕм, – тенĕ ăна Иисус.
– Эпĕ сăмахăма иудейсем ялан пуҫтарăнакан
синагогăсенче, Турă Ҫуртĕнче каларăм, вăрттăн
нимĕн те вĕрентмен. 21 Эсĕ мĕншĕн Манран
ыйтатăн? Эпĕ мĕн каланине итленĕ ҫынсенчен
кайса ыйт. Эпĕ мĕн вĕрентнине вĕсем пĕлеҫҫĕ».
22 Ҫак сăмахсене илтсен юнашар тăракан
тарҫăсенчен пĕри Ăна питĕнчен ҫупса янă. «Эсĕ
аслă священника ҫапла хуравлатăн-и-ха?» – тенĕ
вăл. 23 «Эпĕ тĕрĕс мар каларăм пулсан мĕн тĕрĕс
маррине ăнлантарса пар, – тавăрнă ăна Иисус. –
Эпĕ тĕрĕсех каларăм пулсан эсĕ Мана мĕншĕн
ҫапатăн?» 24 Анна вара Иисуса, ҫыхнăскере, Каиафа
ятлă аслă священник патне илсе кайма хушнă.

*Петр каллех Иисуса пĕлмĕш пулни*

(Мф. 26:71-75; Мк. 14:69-72; Лк. 22:58-62)

25 Петр текен Симон кăвайт умĕнчех ăшăнса тăнă.
«Эсĕ те Унăн вĕренекенĕ мар-и-ха?» – ыйтнă унран
ҫавăнта татах. «Ҫук, ҫук», – тунса каланă Петр.
26 Аслă священникăн чурисенчен пĕри, хайхи
хăлхине Петр касса татнин тăванĕ, ҫапла ыйтнă:
«Эпĕ сана садра Унпа пĕрле курманччĕ-и-ха?»
27 Петр каллех Иисуса пĕлмĕш пулнă. Ҫав самантра
автан авăтса янă.

*Иисус Пилат патӗнче*
(Мф. 27:1-2, 11-14; Мк. 15:1-5; Лк. 23:1-5)
28 Ирпе ирех иудейсем Иисуса Каиафа патӗнчен
преторине илсе пынӑ. Ирсӗрленес мар тесе вӗсем
преторине кӗмен, мӗншӗн тесен хӑйсен йӑлипе
каҫхине пасха апачӗ ҫимелле пулнӑ. 29 Ҫавӑнпа та
Пилат хӑй вӗсенчен тухса ыйтнӑ: «Эсир Ку Ҫынна
мӗн пирки айӑплатӑр?» 30 Вӗсем ӑна хуравланӑ:
«Вӑл усал ӗҫ туман пулсан, эпир Ӑна сана тытса
памӑттӑмӑр». 31 «Эсир Ӑна илсе кайӑр та хӑвӑр
саккунӑрпа суд тӑвӑр», – тенӗ Пилат. «Пирӗн ҫынна
вӗлермеллех айӑпламалли ирӗк ҫук», – тавӑрнӑ ӑна
иудейсем. 32 Ҫапла Иисус Хӑй мӗнле вилӗмпе
вилесси ҫинчен малтанах калани пурнӑҫланнӑ.
33 Пилат вара каллех преторине кӗнӗ те Иисуса
чӗнсе илсе каланӑ: «Эсӗ Иудея Патши-и?» 34 «Эсӗ ху
ҫапла шутлатӑн-и е ҫын сӑмахӗпе Ман пирки ҫапла
калатӑн?» – ыйтнӑ Иисус. 35 «Эпӗ иудей-и-мӗн? –
хирӗҫленӗ Пилат. – Сана Хӑвӑн халӑхупа аслӑ
священник ман алла тытса пачӗҫ. Мӗн тунӑ вара
Эсӗ?» 36 Иисус ҫапла тавӑрнӑ: «Манӑн Патшалӑхӑм
ҫак тӗнчери мар. Манӑн Патшалӑхӑм ҫак тӗнчери
пулсан, Мана пӑхӑнса тӑракансем Манӑн хӳтте кӗнӗ
пулӗччӗҫ, иудейсене тыттармӗччӗҫ. Анчах та халӗ
Манӑн Патшалӑхӑм кунта мар». 37 «Эппин Эсӗ
Патшах-и?» – тенӗ Ӑна Пилат. «Эпӗ Патша тесе эсӗ
каларӑн, – тавӑрнӑ Иисус. – Эпӗ чӑнлӑх ҫинчен
каласа пӗлтерме ҫуралнӑ, ҫавӑншӑн тӗнчене килнӗ.
Чӑнлӑхлӑ кашни ҫын Ман сасса итлет». 38 «Мӗн вӑл
чӑнлӑх?» – тенӗ Ӑна Пилат.

*Иисуса вӗлерме ыйтни*
(Мф. 27:15-31; Мк. 15:6-20; Лк. 23:13-25)
Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн вӑл каллех иудейсем патне
тухнӑ та каланӑ: «Ку Ҫынна айӑплама эпӗ нимӗнле
сӑлтав та тупмастӑп. 39 Сирӗн йӑлӑрпа манӑн пасха
уявӗ тӗлне тӗрмери пӗр ҫынна кӑларса яма ирӗк
пур. Эсир хирӗҫ мар пулсан, Иудея Патши
текеннине кӑларса ярӑп». 40 Вара пурте каллех:
«Ӑна мар, Вараввӑна кӑларса яр!» – тесе кӑшкӑрнӑ.
Варавва ятли вӑрӑ-хурах пулнӑ.

19 Пилат вара Иисуса хурал аллине панӑ та
хӗнеме хушнӑ. 2 Салтаксем йӗплӗ кӳкен
хуллинчен пуҫ кӑшӑлӗ ҫыхса ӑна Иисус пуҫне
тӑхӑнтартнӑ, ҫине патшалла хӗрлӗ тум уртса янӑ.
3 «Сывӑ пултӑр иудейсен Патши!» – тесе вӗсем
Иисуса ҫупа-ҫупа янӑ. 4 Пилат вӗсене каллех тухса
каланӑ: «Вӑл айӑплӑ маррине пӗлтерме Ӑна эпӗ
сирӗн патӑра кӑларттаратӑп». 5 Иисуса вара йӗплӗ
кӳкен пуҫ кӑшӑлӗпе, вӑрӑм хӗрлӗ тумпа кӑларнӑ.
«Акӑ вӑл Ҫын», – тенӗ вӗсене Пилат. 6 Аслӑ
священниксемпе вӗсен тарҫисем Ӑна курсанах:
«Пӑталаттар Ӑна, пӑталаттар!» – тесе кӑшкӑрнӑ.
«Эпӗ Унра нимӗнле айӑп та тупмастӑп, тытӑр та
хӑвӑр пӑталӑр», – тенӗ вӗсене Пилат. 7 «Пирӗн
хамӑрӑн саккун, – тавӑрнӑ ӑна иудейсем. – Хӑйне
Турӑ Ывӑлӗ тесе каланӑшӑн Ӑна пирӗн саккунпа
вӗлермелле».
8 Ҫак сӑмахсене илтсен Пилат тата ытларах хӑраса
ӳкнӗ. 9 Вӑл каллех преторине кӗнӗ те Иисусран
ыйтнӑ: «Эсӗ ӑҫтисем пулатӑн?» Иисус нимӗн те
каламан. 10 «Эсӗ манпа та калаҫасшӑн мар-и? – тенӗ
вара Ӑна Пилат. – Пӗлместӗн-им, манӑн Сана
пӑталаттарма та ирӗкӗм пур, кӑларса яма та
ирӗкӗм пур». 11 «Ҫӳлтен паман пулсан санӑн Манпа
пуҫ пулма нимӗнле ирӗк те пулас ҫукчӗ, – тавӑрнӑ
Иисус, – ҫавӑнпа Мана сан аллуна тытса паракана
ытларах ҫылӑх пулӗ». 12 Ҫак самантран пуҫласа
Пилат Иисуса ирӗке кӑлармашкӑн май шыранӑ.
«Ӑна ирӗке ярсан эсӗ императорӑн тусӗ те мар
вара! Хӑйне хӑй патша тесе калакан кашни ҫын –
император тӑшманӗ!» – тесе кӑшкӑрашнӑ
иудейсем.
13 Ҫак сӑмахсене илтсен Пилат Иисуса преторирен
илсе тухма хушнӑ, хӑй суд тумалли вырӑна ларнӑ.
Чултан купаланӑ ҫак ҫӳллӗ вырӑна Лифостротон,
еврейла Гаввафа, теҫҫӗ. 14 Ку ӗнтӗ пасха умӗнхи
эрне кун, кӑнтӑрла тӗлнелле пулнӑ. «Акӑ сирӗн
Патшӑр», – тенӗ Пилат иудейсене. 15 Анчах та
вӗсем: «Атя, хӑвӑртрах пӑталаттар Ӑна!» – тесе
кӑшкӑрма пуҫланӑ. «Епле-ха сирӗн Патшӑра
пӑталаттарам?» – тенӗ Пилат. «Императорсӑр пуҫне
пирӗн урӑх патша ҫук», – тавӑрнӑ аслӑ
священниксем. 16 Вара тин Пилат вӗсене Иисуса
пӑталама ирӗк панӑ. Ҫавӑнтах Иисуса тытса илсе
кайнӑ.

*Иисус Христоса пӑталани*
(Мф. 27:32-44; Мк. 15:21-32; Лк. 23:26-43)
17 Иисус, Хӑйӗн хӗресне ҫӗклесе, «Пуҫ купташки»
текен вырӑна ҫитнӗ, еврейла ӑна Голгофа теҫҫӗ.
18 Хӗрес ҫумне те Ӑна ҫавӑнтах пӑталанӑ. Унпа
пӗрле тепӗр икӗ ҫынна пӑталанӑ; варринчи хӗрес
ҫине – Иисуса, тепӗр иккӗшне вара Унран икӗ енне.
19 Хӗрес ҫумне тата хӑма татӑкӗ ҫапса хунӑ. Хӑми
ҫине Пилат ҫапла ҫыртарнӑ пулнӑ: «Иудея Патши,
Назорей Иисус». 20 Иисуса пӑталанӑ вырӑн хула
хӗрринчех пулнӑ. Ҫавӑнпа хӗрес ҫине мӗн ҫырнине
иудейсенчен нумайӑшӗ вуланӑ. Ҫырма вара
еврейла, грекла тата латинла ҫырнӑ пулнӑ.
21 Иудейсен аслӑ священникӗсем Пилата
ӳпкелешнӗ: «„Иудея Патши“ тесе мар, „Вӑл Хӑйне
Иудея Патши тесе каланӑ“, – тесе ҫырмаллаччӗ».
22 «Эпӗ мӗнле ҫыртарнӑ, ҫаплах пултӑр», – тавӑрнӑ
Пилат.
23 Иисуса хӗрес ҫумне пӑталасан салтаксем Унӑн
тумтирне илсе тӑватӑ пая уйӑрнӑ. Кашни салтака
пӗрер пай лекнӗ. Вӗсем Унӑн хитонне те илнӗ, ӑна
вара ҫӗлемесӗр тӗртсе тунӑ пулнӑ. 24 Ҫавӑнпа вӗсем
ҫапла калаҫса татӑлнӑ: «Хитонне ҫурас мар, шӑпа
ярас: кама шӑпа тухать, ҫавӑ илтӗр». Ҫапла майпа
Ҫырнинче «тумтирӗме илчӗҫ те хӑйсем хушшинче
уйӑрчӗҫ, кӗпене вара шӑпа ярса валеҫрӗҫ» тесе
калани пурнӑҫланнӑ. Салтаксем ҫавӑн пек тунӑ та.
25 Иисуса пӑталанӑ хӗрес патӗнче Унӑн Амӑшӗ,
Амӑшӗн аппӑшӗ, Клеопа Марийи тата Мария
Магдалина тӑнӑ. 26 Иисус Хӑйӗн Амӑшне тата

çавăнта тăракан юратнă вĕренекенне асăрхасан
Амăшне каланă: «Акă Санăн ывăлу». 27 «Акă санăн
Аннӳ», – тенĕ унтан вĕренекенне. Çав вăхăтран
вара çак вĕренекен Иисус Амăшне хăй патне илнĕ.

*Иисус Христос вилĕмĕ*

(Мф. 27:45-56; Мк. 15:33-41; Лк. 23:44-49)

28 Çавăн хыççăн Иисус, пĕтĕмпех пурнăçланнине
кура, Çырнинче калани пулса çиттĕр тесе, çапла
каланă: «Ăшăм хыпрĕ». 29 Çавăнта хĕрхӳлентернĕ
хĕрлĕ эрех тултарнă кăкшăм ларнă. Салтаксем çав
шĕвеке сăхтарнă мунчалана иссоп патакки вĕçне
тирсе Унăн çăварĕ патне илсе пынă.
30 Хĕрхӳлентернĕ хĕрлĕ эрех тутанса пăхсан Иисус
каланă: «Мĕн пулмалли пулчĕ!» Вара Унăн пуçĕ
лăштăрах усăннă та, юлашки сывлăшĕ тухнă. 31 Ку
ĕç эрне кун пулнăран иудейсем вилесене хĕрес
çинче шăмат кунччен – вăл шăмат кун иудейсен
мăн кунĕ пулнă – хăварасшăн пулман. Çавăнпа
вĕсем пăталанă çынсен ури тунисене çапса ватса
хĕрес çинчен антарма Пилатран ыйтнă. 32 Вара
салтаксем пынă та Иисуспа пĕрле пăталанисенне
иккĕшĕнне те ури тунисене çапса ватнă. 33 Иисус
тĕлне çитсен салтаксем Вăл вилнине курнă та Унăн
урисене ватас темен. 34 Анчах та пĕр салтакĕ Ăна
аякĕнчен сăнăпа чикнĕ, çавăнтах юнпа шыв юхса
тухнă. 35 Сире çакна хăй кусĕпе хăй курнă çын
çирĕплетсе пĕлтерет, вăл çирĕплетсе калани чăн.
Сире ĕнентересшĕн хăй чăн каланине вăл пĕлет.
36 Çапла майпа Çырнинче «Унăн пĕр шăммине те
çапса ватмĕç» тени пурнăçланнă. 37 Çырнинче
тепĕр тĕлте çапла калани те пур: «Хăйсем сăнăпа
Чикни çине пăхĕç».

*Иисуса пытарни*

(Мф. 27:57-61; Мк. 15:42-47; Лк. 23:50-56)

38 Каярахпа Аримафейăра çуралса ӳснĕ Иосиф
Иисус ӳтне хĕрес çинчен илме Пилатран ирĕк
ыйтнă. Иисусăн вĕренекенĕ пулнă пулин те,
иудейсенчен хăранипе çакна Иосиф палăртман.
Пилат ăна ирĕк панă. Вара вăл Иисус ӳтне пырса
илсе кайнă. 39 Иосифпа пĕрле тата пĕррехинче
Иисус патне çĕрле вăрттăн пынă Никодим та пулнă.
Вăл икĕ пăта яхăн алоэпе смирна хутăшĕ илсе
пынă. 40 Çапла вара вĕсем иудейсен йăлипе Иисус
ӳтне ырă шăршăллă çу сĕрнĕ пирпе чĕркенĕ.
41 Иисуса пăталанă вырăнтан инçех те мар сад ӳснĕ.
Çав садра унччен пĕр виле те пытарман çĕнĕ
тупăклăх пулнă. 42 Тепĕр кунне шăмат кун –
иудейсен канмалли кунĕ – пулнăран тата тупăклăх
çывăх пулнăран Иисуса çавăнтах пытарнă.

*Иисус чĕрĕлсе тăни*

(Мф. 28:1-10; Мк. 16:1-8; Лк. 24:1-12)

20 Эрнен малтанхи кунĕнче Мария Магдалина
тул çутăлса çитнĕ-çитменех тупăклăх патне
пынă. Пăхнă та – курах кайнă: шăтăка хупланă чула
такам йăвантарса янă. 2 Вара вăл хăвăртрах Петр
текен Симон патне тата Иисус юратнă тепĕр
вĕренекен патне чупнă. «Хуçамăра тупăклăхран
илсе кайнă, ăçта илсе кайнине те пĕлместпĕр», –
тенĕ вĕсене Мария Магдалина. 3 Петрпа тепĕр
вĕренекен çав самантрах тухнă та тупăклăх патне
васканă. 4 Иккĕшĕ те пĕрлех чупма пуçланă пулин
те, леш вĕренекенĕ, Петртан хытăрах чупса, Иисуса
пытарнă вырăна малтарах çитнĕ. 5 Вăл шăтăкран
пĕшкĕнсе пăхнă та пирсем выртнине асăрханă.
Çапах та хăй шала кĕмен. 6 Петр текен Симон та ун
хыççăн чупса çитнĕ. Вăл тупăклăха кĕнĕ те унта
Иисус ӳтне чĕркенĕ пирсем 7 тата Иисусăн пуçне
витнĕ тутăр выртнине кăна асăрханă. Чĕркенĕ
тутăр пирсенчен уйрăм выртнă. 8 Вара тупăклăх
патне малтарах çитнĕ вĕренекенĕ те шала кĕнĕ,
çаксене курсассăн вăл Хуçамăр вилĕмрен
чĕрĕлнине ĕненнĕ. 9 Çырнинче Иисусăн вилĕмрен
чĕрĕлсе тăмалла тесе каланине вĕсем ун чухне
пĕлмен-ха. 10 Вара вĕренекенĕсем каллех хăйсем
патне таврăннă.

*Иисус Мария Магдалинăна курăнни*

(Мк. 16:9-11)

11 Мария тупăклăх умĕнче йĕрсе тăнă. Çапла йĕре-
йĕрех вăл çĕр хăвăлне пĕшкĕнсе пăхнă. 12 Вăл унта
шурă тумлă икĕ ангел ларнине курах кайнă. Пĕри
Иисус выртнă тĕлте пуç вĕçĕнче, тепри ура вĕçĕнче
ларнă. 13 «Эй, хĕрарăм, мĕншĕн йĕретĕн?» – тенĕ
ăна ангелсем. «Хуçама илсе кайнăшăн, Ăна ăçта
хунине те пĕлменшĕн йĕретĕп», – тенĕ вĕсене
Мария. 14 Çапла каласан вăл хыçалалла çавăрăнса
пăхнă та Иисус тăнине курнă. Анчах та Мария
Иисуса палласа илеймен. 15 «Эй, хĕрарăм! Мĕншĕн
йĕретĕн? Кама шыратăн?» – тенĕ ăна Иисус. Ку
пахчаçă пулĕ-ха тесе, Мария Ăна çапла каланă: «Эй,
ырă Çыннăм! Эсĕ Унăн ӳтне илсе кайнă пулсан, ăçта
хунине каласамччĕ. Эпĕ Ăна кайса илĕттĕм».
16 «Мария!» – тенĕ ăна Иисус. Мария çавăрăнса
пăхнă та: «Раввуни!» – тесе кăшкăрса янă. Çакă:
«Вĕрентекен!» тенине пĕлтерет. 17 «Ман çума ан
сĕртĕн, – тенĕ ăна Иисус, – мĕншĕн тесен Эпĕ Хам
Аттем патне çĕкленмен-ха. Эсĕ Манăн ĕненекен
тăванăмсем патне кай та çакăн çинчен пĕлтер: Эпĕ
Хамăн Аттем патне, сирĕн Аçăр патне; Хамăн
Туррăм патне, сирĕн Туррăр патне çĕкленетĕп».
18 Мария Магдалина вĕренекенсем патне кайнă та:
«Эпĕ Хуçамăра куртăм!» – тесе хыпарланă. Иисус
хăйне мĕн каланине те вăл йăлтах каласа кăтартнă.

*Иисус вĕренекенĕсене курăнни*

(Мф. 28:16-20; Мк. 16:14-18; Лк. 24:36-49)

19 Çав вырсарни каçах, вĕренекенĕсем
иудейсенчен хăранипе хăйсем пуçтарăннă пӳрт
алăкне питĕрсе ларнă чухне, вĕсем хăйсем
хушшинче Иисус тăнине курах кайнă. «Канăçлăх
пултăр сире!» – тенĕ Вăл. 20 Çапла каласан Иисус
вĕсене Хăйĕн алли-урине, аякне кăтартнă.
Хуçамăра курсан вĕренекенĕсем питĕ савăнса
кайнă. 21 «Канăçлăх пултăр сире! – саламланă
вĕсене Иисус тепĕр хут. – Ĕнтĕ Аттем Мана сире
вĕрентме янă пекех, Эпĕ те сире ыттисене
вĕрентме яратăп». 22 Çавăн хыççăн Иисус вĕсем
çине вĕрнĕ те çапла каланă: «Манран çак Святой
Сывлăша йышăнăр. 23 Эсир камăн çылăхĕсене

каçарăр, унăн каçарăнĕç; камăнне каçармăр, унăн
каçарăнмĕç». 24 Вун иккĕшĕнчен пĕри, Йĕкĕреш
текен Фома, Иисус пӳрте кĕрсе тăнă чухне унта
вĕсемпе пулман. 25 «Эпир Хуçамăра куртăмăр!» –
тенĕ ăна ытти вĕренекенĕсем. «Пăталасан
суранланнă аллисене, аяк пĕрчисене тытса
пăхмасăр ĕненместĕпех!» – тенĕ Фома ыттисене.

### Иисуспа Фома

26 Тепĕр сакăр кунран Унăн вĕренекенĕсем каллех
пĕр пӳртре пуçтарăннă. Фома та вĕсемпе пĕрлех
пулнă. Çапла питĕрĕнсе ларнă чухне Иисус кĕрсе
тăнă та вĕсен умне тухса саламланă: «Канăçлăх
пултăр сире!» 27 Унтан Фомана каланă: «Пӳрнӳсене
тăс-ха! Акă Манăн аллăмсем. Халĕ аллуна тăсса
Манăн аякăмри сурана сĕртĕн. Ан иккĕлен, ĕнен!»
28 «Хуçам тата Туррăм!» – теме çеç пултарнă Фома.
29 Иисус ăна каланă: «Эсĕ Мана курсан тин ĕнентĕн.
Курмасăрах ĕненекенсем телейлĕ».

### Ку кĕнекен тĕллевĕ

30 Хăйĕн вĕренекенĕсене Иисус тата нумай
хăватсем туса кăтартнă пулнă. Ку кĕнекере вĕсем
пирки çырман. 31 Çаксене сире Иисус вăл Турă
Суйласа илни, Турă Ывăлĕ пулнине ĕнентересшĕн,
ĕненсен Унăн ячĕпе чĕрĕлĕхлĕ пулччăр тесе
çырнă.

### Иисус вĕренекенĕсене Тивериада тинĕсĕ патĕнче курăнни

21 Çавăнтан кайран Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсене Тивериада тинĕсĕ патĕнче
каллех курăннă. Ку ĕç çапла пулса иртнĕ. 2 Петр
текен Симон, Йĕкĕреш текен Фома, Галилейăри
Кана çынни Нафанаил, Зеведей ывăлĕсем тата
Иисусăн тепĕр икĕ вĕренекенĕ пĕрле пуçтарăннă.
3 «Эпĕ пулла каятăп», – тенĕ вĕсене Петр текен
Симон. «Эпир те пыратпăр», – тенĕ ăна ыттисем.
Вара вĕсем кимĕ çине ларса тинĕсе тухнă. Анчах
çав каç вĕсем нимĕн те тытайман. 4 Ирпе ирех
Иисус вĕсене çыранта кĕтсе тăнă, анчах
вĕренекенĕсем Иисуса паллайман. 5 «Ачасем,
сирĕн çимелли мĕн те пулин пур-и?» – тенĕ вĕсене
Иисус. «Çук çав», – тавăрнă вĕренекенĕсем.
6 «Сĕреке-тетелĕрсене кимĕрен сылтăмарах
пăрахăр-ха, вара кĕрĕ», – тесе каланă вĕсене Иисус.
Çапла тусан туртса кăлараймиех пулă кĕнĕ.
7 Иисусăн юратнă вĕренекенĕ вара Петра çапла
каланă: «Ку – Хуçамăр вĕт-ха!» Петр текен Симон,
çарамасскер, «Ку – Хуçамăр» тенине илтсен, çи-
пуçне пилĕк тавра çыхнă та шыва сикнĕ. 8 Ытти
вĕренекенĕсем, тулли сĕреке-тетелĕсене сĕтĕрсе,
киммипе çыран хĕрне ишсе пынă. Пуллине вĕсем
çырантан инçех те мар, пĕр çитмĕл хăлаçра, тытнă
пулнă. 9 Çыран хĕррине тухсан вĕсем кăвайт
çуннине курнă. Тĕлкĕшекен кăвар çине пулă хунă
иккен. Унтах çăкăр та пулнă. 10 «Халĕ ĕнтĕ тытнă
пуллăра илсе килĕр», – тенĕ вĕсене Иисус. 11 Петр
текен Симон кайнă та хайхи сĕреке-тетелсене
çыран хĕррине сĕтĕрсе кăларнă. Шултра пулă
туллиех лекнĕ пулин те, сĕреки çурăлса кайман.
Пурĕ çĕр аллă виçĕ пулă кĕнĕ пулнă. 12 «Çиме килĕр»,
– тенĕ вĕсене Иисус. Ку Иисус пулнине пĕлсе
вĕренекенĕсенчен пĕри те Унран: «Эсĕ Кам?» – тесе
ыйтма хăйман. 13 Иисус вĕсем патнерех пынă та
çăкăрпа пулă илсе тыттарнă. 14 Çапла майпа,
вилĕмĕнчен чĕрĕлсе тăнă хыççăн Иисус Хăйĕн
вĕренекенĕсене виççĕмĕш хут курăннă.

### Иисуспа Петр

15 Çисе ларнă чухне Иисус Петр текен Симона
каланă: «Иона ывăлĕ Симон! Эсĕ Мана вĕсенчен те
ытларах юрататăн-и?» «Юрататăп, Хуçамăр! – тенĕ
Петр. – Эпĕ Сана юратнине Эсĕ Ху та пĕлетĕн».
Иисус вара ăна каланă: «Манăн путекĕмсен кĕтӳçи
пул». 16 Иисус унран тата тепĕр хут ыйтнă: «Иона
ывăлĕ Симон! Эсĕ Мана юрататăн-и?» «Юрататăп,
Хуçамăр! – тенĕ Петр. – Эпĕ Сана юратнине Эсĕ Ху
та пĕлетĕн». Иисус ăна каланă: «Манăн surăхăмсен
кĕтӳçи пул». 17 Виççĕмĕш хут унран ыйтнă: «Иона
ывăлĕ Симон! Эсĕ Мана юрататăн-и?» Хăйĕнчен
виççĕмĕш хут ыйтнăшăн салхуланса Петр Ăна
çапла каланă: «Хуçамăр! Эсĕ пĕтĕмпех пĕлетĕн. Эпĕ
Сана юратнине те пĕлетĕн». Иисус каллех каланă:
«Манăн сурăхăмсен кĕтӳçи пул. 18 Чăн-чăнах
калатăп сана: çамрăк чухне эсĕ ху тумланаттăн та
каяс тенĕ çĕре каяттăн. Анчах та ватăлсан, аллусем
лăштăрах кайсан, сана урăххи тумлантарĕ те каяс
килмен çĕре çавăтса кайĕ». 19 Çак сăмахсене Иисус
Петр мĕнле вилессе, вилĕмĕпе те Турра мухтава
кăларасса систерсе каланă. «Ман хыççăн пыракан
пул», – тенĕ унтан Вăл Петра.

### Иисуспа Унăн юратнă вĕренекенĕ

20 Петр каялла çавăрăнса пăхнă та хăйĕн хыççăн
Иисусăн юратнă вĕренекенĕ пынине курнă. Ку
шăпах ĕнтĕ пĕррехинче, каçхи апат вăхăтĕнче,
Иисус кăкăрĕ çумне тĕршĕнсе: «Хуçамăр, Сана
тытса паракан кам пулĕ?» – тесе ыйтаканни пулнă.
21 Çав вĕренекене асăрхасан Петр Иисусран:
«Хуçамăр, ăна вара мĕн пулĕ?» – тесе ыйтнă. 22 «Эпĕ
ăна Хам тепре киличченех пурăнтарас тетĕп пулсан
та, сана мĕн ĕç? – тавăрнă ăна Иисус. – Эсĕ Ман
хыççăн пыракан пул». 23 Акă мĕншĕн ĕнтĕ
юлташĕсем хушшинче çав вĕренекенĕ нихăçан та
вилмест текен сас-хура сарăлнă. Анчах та Иисус ун
пирки нихăçан та вилмест тесе каламан, «Эпĕ ăна
Хам тепре киличченех пурăнтарас тетĕп пулсан та,
сана мĕн ĕç?» тесе çеç каланă пулнă.

### Хыç сăмах

24 Мĕн пулса иртни çинчен çырĕплетсе
пĕлтерекенĕ, çак йĕркесене çыраканĕ – шăпах та
ĕнтĕ çав вĕренекен. Вăл çирĕплетсе пĕлтерни чăн,

çавна пурте пĕлсе тăратпăр. [25] Иисус татах тем те пĕр тунă. Çавсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартас пулсан, çырнă кĕнекесем тĕнчене те шăнăçаяс çук тесе шутлатăп. Аминь.

# Апостолсен ĕçĕ-хĕлĕ

### Иисус тӳпене çĕкленни

1 Эй, Феофил, эпĕ хамăн малтанхи кĕнекемре
Иисус Хăй ĕçне тума пуçланăранпа тӳпене
çĕкленичченех мĕн-мĕн туни тата мĕне вĕрентни
çинчен пĕтĕмпех çырнăччĕ. Хăй суйласа илнĕ
апостолĕсене Вăл тӳпене çĕкленнĕ кун Святой
Сывлăш хăвачĕпе хушусем парса хăварнă.
3 Асапланса вилнĕ хыççăн Вăл вĕренекенĕсене
хĕрĕх кун хушши курăннă, Хăй чĕррине нумай
хутчен çирĕплетнĕ, Турă Патшалăхĕ çинчен кала-
кала кăтартнă. 4 Вара, вĕсене пĕрле пуçтарса, Вăл
çапла хушса хăварнă: «Иерусалимран ан кайăр,
Аттем мĕн шантарнине кĕтĕр, ун пирки Эпĕ сире
каланăччĕ. 5 Мĕншĕн тесен Иоанн шывпа тĕне
кĕртнĕ, эсир вара тепĕр темиçе кунран Святой
Сывлăшпа тĕне кĕрĕр». 6 Çавăнпа та пĕрле
пуçтарăннă апостолсем Унран çапла ыйтнă:
«Хуçамăр! Эсĕ çав хушăра Израиль халăхне çĕнĕрен
патшалăх туса парасшăн мар пулĕ те?» 7 Вăл вара
вĕсене каланă: «Аттем Хăй ирĕкĕпе палăртса хунă
вăхăтпа куна пĕлесси сирĕн ĕçĕр мар. 8 Анчах та
Святой Сывлăш сирĕн çине ансан эсир хăват илĕр.
Вара Ман çинчен Иерусалимра та, пĕтĕм Иудейăра
та, Самарире те, тĕнче хĕррине çитиччченех каласа
çирĕплетекенсем пулăр». 9 Çак сăмахсене каласан
вĕсен куçĕ умĕнчех Вăл тӳпене çĕкленнĕ те Ăна
пĕлĕт илсе кайнă. Вăл куçран çухалнă. 10 Вăл тӳпене
çĕкленнине апостолсем пăхса тăнă. Çав вăхăтра,
тӳпенелле пăхнă чухне, вĕсем сасартăк хăйсемпе
юнашар шурă тумлă икĕ çын тăнине курнă. 11 «Эй,
Галилея çыннисем! – тенĕ вĕсем. – Мĕн эсир
тӳпенелле пăхса тăратăр? Эсир Иисус хăвăртан
уйăрăлса тӳпене çĕкленнине куртăр. Вăл тӳпене
епле çĕкленчĕ, килессе те çавнашкалах килĕ».

### Иуда вырăнне урăх апостола суйлани

12 Апостолсем вара Елеон текен ту çинчен
Иерусалима таврăннă. Тăвĕ Иерусалимран инçех
те мар, шăмат кун утма юранă çул тăршшĕнче, пĕр
çухрăма яхăнра, вырнаçнă пулнă. 13 Таврăнсассăн
вĕсем хăтлă пӳлĕме хăпарнă. Унта Иисусăн çак
вĕренекенĕсем пулнă: Петр, Иаков, Иоанн, Андрей,
Филипп, Фома, Варфоломей, Матфей, Алфей
Иаковĕ, Симон Зилот тата Иаковпа пĕртăван Иуда.
14 Вĕсем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа Турра кĕлтуса
пурăннă. Вĕсемпе пĕрле унта темиçе хĕрарăм,
Иисус Амăшĕ Мария тата Иисусăн тăванĕсем пулнă.
15 Тепĕр темиçе кунран çавăнта çĕр çирĕм çынна
яхăн пухăннă. Çавăн чухне Петр тăрса Иисус
вĕренекенĕсене çапла каланă: «Тăван çыннăмсем!
Иисуса тытакансене ертсе пынă Иуда çинчен
Святой Сывлăш Давид сăмахĕсемпе малтанах
пĕлтерсе хунă. Çырнинчи çав сăмахсен
пурнăçланмалла пулчĕ. 17 Мĕншĕн тесен Иуда
пирĕнпе пĕр йышраччĕ, Турă ĕçне тума ăна та
шăпа тухнăччĕ. 18 Анчах та таса мар ĕçшĕн илнĕ
укçипе Иуда пĕр ана çĕр туянчĕ. Унăн виллине те,
питĕ хытă ӳкнипе вар-хырăмĕ çурăлса, ăш-чикки
тухса кайнăскере, çав ана çинчех тупнă. 19 Çакна
Иерусалим çыннисем пурте пĕлеççĕ, çавăнпа вăл
ана вырăнне тăван чĕлхипе вĕсем Акелдама тесе ят
панă, ку вăл Юн Ани тени пулать. 20 Псалом
кĕнекинчех çапла çырнă: „унăн кил-çурчĕ пушанса
юлтăр, унта пурăнакан ан пултăр“, тата „ăна шанса
панă ĕçе урăххи тутăр“ тени те пур. 21 Çапла вара ун
вырăнне пирĕн урăххине суйламалла. Вăл çын
Иисус Хуçамăр пирĕнпе пулнă чухне яланах Ун
хыççăн çӳренĕскер пулмалла. 22 Вăл çын Иоанн
шыва кĕртнинчен пуçласа Иисус тӳпене çĕкленнĕ
кунччченех пирĕнпе пулса, Вăл чĕрĕлсе тăнине
çирĕплетсе пĕлтерекен пулмалла». 23 Вара икĕ
çынран пĕрне суйлама сĕннĕ: пĕри Варсава, тепĕр
майлă тата Иуст текен Иосиф, пулнă; тепри –
Матфий. 24 «Хуçамăр! – тенĕ вĕренекенĕсем кĕлтуса.
– Эсĕ кашнин чĕрине витĕр курса тăратăн, çак
иккĕшĕнчен пĕрне, Ху суйласа илнине,
кăтартсамччĕ. 25 Иуда йышран уйăрăлса хăй
каймалли çĕре кайрĕ. Ун вырăнне апостол тивĕçне
камăн туса пымаллине кăтартсамччĕ!» 26 Вара
вĕсем шăпа янă та, шăпи Матфие тухнă. Ăна вара
вун пĕр апостолпа пĕрле пĕр йыша кĕртнĕ.

### Святой Сывлăш анни

2 Аллăмĕш кун уявĕ çитсен, вĕсем пурте пĕрле
пĕр шухăш-кăмăлпа пухăннă. 2 Сасартăк
тӳперен вăйлă çил-тăвăл кĕрлесе килнĕ чухнехи
пек сасă илтĕннĕ, вĕсем пухăннă çурт шăв-шавпа
тулса ларнă. 3 Унтан апостолсене пайăркаланса
тăракан вут чĕлхи пек чĕлхесем курăннă, вĕсем
кашнин тĕлне пĕрер аннă. 4 Унтан пурин чун-чĕри
те Святой Сывлăшпа тулнă та вĕсем пурте Сывлăш
панă пултарулăхпа хăйсем унччен пĕлмен
чĕлхесемпе калаçа пуçланă.
5 Çав вăхăтра Иерусалимра хулари тата тĕрлĕ çĕр-
шывсенчи хытă ĕненекен иудейсем уява

пуçтарăннă пулнă. 6 Çак кĕрлекен сасă илтĕнсен
халăх пухăнса тулнă та аптăрасах кайнă, мĕншĕн
тесен кашниех хайхи апостолсем вĕсен тăван
чĕлхипе калаçнине илтнĕ. 7 «Çак тĕрлĕ чĕлхесемпе
калаçакансем пурте Галилея çыннисем мар-и вара?
– тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе ыйтнă вĕсем пĕр-
пĕринчен. 8 – Епле-ха эппин пирĕнтен кашниех
харпăр-хăй ачаран калаçнă чĕлхене илтеет? 9 Эпир
– Парфи, Миди, Елам çыннисем; Месопотамире,
Иудейăра, Каппадокире, Понтра, Асире, 10 Фригипе
Памфилире тата Египетра пурăнакансем; Киринея
çывăхĕнчи Ливи çĕрĕнчисем; Римран килнисем;
иудейсем тата иудей тĕнне йышăннă урăх халăх
çыннисем, 11 Критпа Арави çыннисем – эпир пурте
Туррăн хăватлă ĕçĕсем çинчен апостолсем пирĕн
тăван чĕлхесемпе каланине илтетпĕр!» 12 Ăнран
каймалла тĕлĕннипе вĕсем пĕр-пĕринчен: «Мĕне
пĕлтерет-ши ку?» – тесе ыйтнă. 13 Хăшĕ-пĕри тата
тăрăхласа çапла каланă: «Вĕсем пылак хĕрлĕ эрех
ĕçсе лартнă».

### Аллăмĕш кун уявĕнче Петр каланă сăмах

14 Вара Петрпа вун пĕр апостол пухăннă халăх
умне тухнă, Петр пурне те илтмелле çапла каланă:
«Иудейсемпе мĕн пур Иерусалим çыннисем! Çакна
пĕлсе тăрăр, ман сăмахăма тимлĕн итлĕр: 15 Эсир
вĕсене ӳсĕр тесе шухăшлатăр, вĕсем ӳсĕр мар,
мĕншĕн тесен вăхăчĕ те халь ирхи тăхăр сехет
кăна-ха. 16 Ку – Иоиль пророк сăмахĕсем
пурнăçланни: 17 „Юлашки кунсенче, – тесе калать
Турă, – Хамăн Сывлăшăма пур çын çине те ярăп.
Сирĕн ывăлăрсемпе хĕрĕрсем пророкла калаçа
пуçлĕç. Сирĕн çамрăкăрсем тĕрлĕрен курăнусем
курĕç. Сирĕн ватă çыннăрсене тĕлĕкре вăрттăнлăх
уçăлĕ. 18 Çав кунсенче Хамăн Сывлăшăма арçын
чурамсемпе хĕрарăм чурамсем çине те ярăп, вара
вĕсем те пророкла калаçĕç. 19 Çӳл тӳпере хăватсем
кăтартăп, аялта çĕр çинче паллăсем кăтартăп: юн
та, вут та пулĕ, тĕтĕм йăсăрланĕ. 20 Хуçа Туррăмăрăн
аслă та мухтавлă кунĕ çитиччен хĕвел тĕттĕмленĕ,
уйăх юнланĕ. 21 Çавăн чухне кам та кам Хуçамăр
ятне асăнĕ, çав çăлăнĕ“.
22 Эй, Израиль çыннисем! Çак сăмахсене тимлесе
итлĕр: эсир Иисус Назорея, Турă малтанах пĕлсе,
палăртса хунипе сутмалла пулнăскере, тытрăр та
Ăна çылăхлисен аллине патăр. Пĕлетĕр ĕнтĕ, Турă
Унăн тивĕçлĕхне сирĕн хушшăрта Ун урлă
хăватсем, тĕлĕнмелле ĕçсем, паллăсем кăтартса
сире пĕлтерчĕ. Эсир Иисуса вĕлерттертĕр, 24 анчах
та Турă Ăна вилĕм тыткăнĕнчен хăтарса чĕртсе
тăратрĕ, Ăна вилĕм те тытса чараймарĕ. 25 Давид Ун
çинчен çапла каланă: „Эпĕ яланах Хуçамăра
кураттăм, мĕншĕн тесен эпĕ иккĕленесрен Вăл
манăн сылтăм енче тăратчĕ. 26 Çавăнпа чĕрем
савăнăçпа тулать, сăмахăмсем хаваслă, шанчăк
пуртан ӳт-пĕвĕм те канăçса лăпланĕ. 27 Мĕншĕн
тесен Эсĕ чунăма вилнисем хушшинче хăвармăн,
сăваплă çыннуна çĕрсе кайма памăн. 28 Эсĕ мана
пурăнăç çулне кăтартрăн, Хăвăн умăнта Эсĕ чун-
чĕреме савăнăçпа тултарăн“.
29 Эй, тăван çыннăмсем! Давид мăн асаттемĕр
пирки сире хăю çитерсе калам: вăл вилнĕ те ăна
пытарнă; унăн вил тăприйĕ те халичченех
сыхланса юлнă-ха. 30 Ĕнтĕ пророк пулнă пирки вăл
Турă тупа тусах престол çине хăйĕн йăхĕнчен
Суйласа илнине лартма сăмах панине пĕлсе тăнă.
31 Христос чĕрĕлсе тăрасси пирки Давид малтанах
каланă, Унăн чунĕ вилнисем хушшинче юлмĕ, ӳчĕ
çĕрмĕ тенĕ. 32 Ăна, Иисуса, Турă чĕртсе тăратнине
эпир пурте хамăр куçпа хамăр куртăмăр. 33 Çапла
вара, Турă Хăйĕн хăватлă аллипе Иисуса тӳпене
çĕкленĕ. Вăл Хăйне шантарнă Святой Сывлăша
Ашшĕнчен илнĕ. Эсир халĕ мĕн курса-илтсе
тăратăр, çавă йăлтах Иисус хăвачĕпе пулса иртет.
34 Давид тӳпене çĕкленмен, анчах та вăл хăех çапла
калать: «„Эпĕ Санăн тăшманусене уру айне
тăвиччен Эсĕ Манăн сылтăм енче, хисеплĕ вырăнта
лар“, – тенĕ Хуçамăр манăн Хуçама». 36 «Çапла вара,
пĕтĕм Израиль çыннисем, çакна çирĕп пĕлсе тăрăр:
эсир пăталанă Иисуса Турă пирĕн Хуçамăр тата
Çăлаканăмăр турĕ».
37 Çак сăмахсем итлекенсен чĕрисене пырса
тивнĕ, вара вĕсем Петрпа ытти апостолсенчен
ыйтнă: «Тăван çыннăмăрсем! Пирĕн халĕ мĕн
тумалла-ши?» 38 Вара Петр вĕсене çапла каланă:
«Ӳкĕнĕр, çылăх каçарттарма сирĕнтен кашниех
Иисус Христос ячĕпе тĕне кĕтĕр. Вара Святой
Сывлăш тивлетне илейĕр. 39 Мĕншĕн тесен эсир те,
ачăрсем те, катари тăвансем те – Турă чĕнсе
илнисем пурте – Турă пама пулнине илмешкĕн
тивĕçлĕ». 40 Петр вĕсене татах нумай сăмах каласа
ăнлантарнă, ӳкĕтленĕ: «Çак пăсăк ăрупа пĕрле
айăплав тивесрен çăлăнса юлăр», – тенĕ вăл.
41 Вара унăн сăмахне хапăлласа йышăннисем тĕне
кĕнĕ, çав кун тепĕр виçĕ пин ĕненекене яхăн
хутшăннă. 42 Вĕсем апостолсен сăмахĕсенчен
иртмен, пĕрле çăкăр хуçнă, пĕрле кĕлĕ тунă.

### Ĕненекенсен пурăнăçĕ

43 Ĕненекенсем пурте Турра хисеплесе, Турăран
хăраса пурăннă. Иерусалимра апостолсем урлă
тĕрлĕ хăватсем, паллăсем пулнă. 44 Ĕненекенсем
пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннă, мĕн пурри те
вĕсен йăлтах пĕрлехи пулнă. 45 Вĕсем хăйсен
пурлăхне, япалисене сутса кама кирлĕрех, çавсене
валеçнĕ. 46 Пĕр шухăш-кăмăллă пулса вĕсем
кулленех Турă Çуртне пуçтарăннă. Килĕсенче, çăкăр
хуçса валеçнĕ чухне, савăнăçлăн та йăваш
кăмăллăн апатланнă. 47 Ĕненекенсем Турра мухтаса
пурăннă, халăх вĕсене юратнă. Хуçамăр вара
çăлăнакансен йышне – Хăйĕн Чиркĕвне – куллен
ӳстерсех пынă.

## Петр уксаха сыватни

3 Пĕррехинче Петрпа Иоанн кăнтăрла иртни
виçĕ сехетре пулакан кĕлле Турă Çуртне кайнă.
2 Çавăнта амăш варĕнчен уксах çуралнă çын
пулнă. Турă Çуртне кĕрекенсенчен ыйткаласа
ларма çав çынна кашни кунах Илемлĕ Хапха текен
мăн алăк умне çĕклесе пырса лартнă. 3 Петрпа
Иоанн Турă Çуртне кĕнине курсан вăл кĕлмĕçленме
пуçланă. 4 Петрпа Иоанн ун çине тинкерсе пăхнă.
«Пирĕн çине пăх-ха», – тенĕ Петр. 5 Вăл вара, кусем
мĕн те пулин парĕç-и тесе, апостолсем çине
кĕлмĕçленсе пăхнă. 6 Анчах та Петр çапла каланă:
«Ылтăнăм та, кĕмĕлĕм те çук манăн, мĕн пуррине
сана паратăп: Иисус Христос Назорей ячĕпе тăр та
утса çӳре!» 7 Вăл уксах çынна сылтăм аллинчен
тытса тăма пулăшнă. Çав самантрах лешĕн ури
тупанĕсене, чĕркуççийĕсене вăй кĕнĕ, 8 вăл сиксе
тăнă та ута пуçланă. Вăл Турă Çуртне те
апостолсемпе пĕрлех кĕнĕ, сиккелесе çӳресе Турра
мухтанă. 9 Турă Çуртĕнче пулнисем Илемлĕ Хапха
умĕнчи ыйткаласа ларакан уксаха палласа илнĕ.
Вăл утакан пулнине тата Турра мухтанине курсан
пĕтĕм халăх вăл сывалнинчен питĕ хытă хăраса
кайса тĕлĕннĕ.

## Соломон притворĕнче Петр каланă сăмах

11 Уксах пулнă çын, сывалнăскер, Петрпа Иоанран
хăпман. Çавăнпа та тĕлĕнсе кайнă халăх Соломон
притворĕ текен çĕрте вĕсем тавра пуçтарăннă.
12 Çакна асăрхасан Петр халăха каланă: «Эй,
Израиль çыннисем! Мĕн тĕлĕнсе пăхатăр эсир
пирĕн çине? Эпир ăна хамăр хăватпа тата
тасалăхпа утмалла туман вĕт-ха! 13 Авраампа Исаак
тата Иаков Турри, пирĕн мăн асаттесен Турри,
Хăйĕн Ывăлне Иисуса мухтава кăларчĕ. Эсир вара
Ăна тытса патăр. Ăна Пилат хăтарас тенĕччĕ, анчах
эсир Пилат умĕнче Унран тунтăр. 14 Эсир Тасинчен,
Тӳрĕлĕхлинчен тунса çын вĕлерекене ирĕке яма
ыйтрăр, 15 пурăнăç Хуçине вара вĕлертĕр. Ăна ĕнтĕ
Турă вилĕмрен чĕртсе тăратрĕ, çавна курса
çирĕплетекенсем эпир хамăр. 16 Иисус ятне ĕненни
çак эсир куракан, пĕлекен çынна тĕреклĕх пачĕ.
Иисус панă ĕненӳ ăна сирĕн куçăр умĕнчех
сыватрĕ. 17 Çапах та, тăванăмсем, эсир, хăвăр
пуçлăхсем пекех, пĕлмен пирки Иисусран туннине
ăнланатăп. 18 Христосăн асап тӳсмелле пулнине
Турă Хăйĕн мĕн пур пророкĕсем урлă малтанах
пĕлтернĕ, Вăл çавна пурнăçларĕ те. 19 Хăвăр
çылăхăрсене тӳрлетес тесе ӳкĕнĕр, Турă енне
çавăрăнăр. 20 Турă парас савăнăç вăхăчĕ çиттĕр, Хăй
палăртса хунă Иисус Христоса Вăл сирĕн патăра
ятăр. 21 Хальлĕхе, Турă Хăйĕн авалхи мĕн пур
сăваплă пророкĕсем урлă калани пĕтĕмпех
пурнăçланас вăхăтчен, Иисусăн тӳперех пулмалла.
22 Моисей мăн асаттемĕрсене çапла каланă: „Мана
пророка кăларнă пекех, Хуça Туррăр сирĕн валли
хăвăр хушшăртанах Пророк кăларĕ. Вăл кирек мĕн
каласассăн та, Ăна итлесе пурăнăр. 23 Çав Пророка
итлемен çынсен халăхран уйăрăлмалла, пĕтмелле
пулĕ“. 24 Самуилтан пуçласа унран кайранхи мĕн
пур пророксем çак кунсем çитессе пурте малтанах
пĕлтернĕ. 25 Эсир пророксен ывăлĕсем, халал
ывăлĕсем. Çав халала Турă сирĕн мăн асаçăрсене
панă, Вăл Авраама çапла каланă: „Санăн йăху урлă
çĕр çинчи халăхсем пурте пиллĕх илĕç“. 26 Сире
усал ĕçĕрсенчен сыхласа хăварас тесе Турă Хăйĕн
Ывăлне Иисуса вилĕмрен чĕртсе тăратса сире
пиллеме чи малтан янă».

## Петрпа Иоанн синедрион канашĕ умĕнче

4 Петрпа Иоанн халăха вĕрентнĕ чухне вĕсем
патне священниксем, Турă Çурчĕн хуралĕн
пуçлăхĕсем тата саддукейсем пырса çитнĕ. 2 Вĕсене
апостолсем халăха вĕрентни тата Иисус чĕрĕлсе
тăнă пек вилĕмрен чĕрĕлсе тăмалла тесе ӳкĕтлени
питĕ тарăхтарнă. 3 Вара Петрпа Иоана тытнă та, каç
пулса килнĕрен, ирччен хурал аллине пама хушнă.
4 Вĕрентсе каланă сăмаха итлекенсенчен чылайăшĕ
ĕненме пуçланă, çавнашкаллисем пилĕк пин çынна
яхăн пулнă.

5 Тепĕр кунне Иерусалимра иудейсен
пуçлăхĕсемпе ятлă-сумлă çыннисем тата саккун
вĕрентӳçисем пухăннă. 6 Унта аслă священник Анна
та, Каиафа та, Иоанпа Александр та, аслă
священник ăрăвĕнчен тухнă ытти çынсем те пынă.
7 Вара, апостолсене хăйсем умне тăратса, çапла
ыйтнă: «Эсир çак ĕçе мĕнле хăватпа тата кам ячĕпе
турăр?» 8 Çавăн чухне Петр, чун-чĕри Святой
Сывлăшпа тулнăскер, вĕсене çапла каланă: «Эй,
халăх пуçлăхĕсемпе Израилĕн ятлă-сумлă
çыннисем! 9 Халсăр çынна ырă тунăшăн пире паян
явап тыттаратăр пулсан, мĕнле сыватнине
тĕпчетĕр пулсан, 10 Израиль халăхĕ те, эсир те
пĕлсе тăрăр: вăл Иисус Христос Назорей ячĕпе
сывалчĕ, ăна Иисус сирĕн ума сывă тăмалла турĕ.
Эсир Иисуса пăталарăр, Турă Ăна вилĕмрен чĕртсе
тăратрĕ. 11 Эсир, çурт тăвакансем, юрăхсăр тесе
ывăтнă чул никĕсри тĕп чул пулса тăчĕ. Çав чул вăл
– Иисус. Урăх никам та çăлăнăç кӳреймĕ, мĕншĕн
тесен çакă çутă тĕнчере çын панă ятсенчен пире
çăлма пултаракан урăх ят çук». 13 Петрпа Иоанн
хăюлăхне курса тата вĕсем вĕренмен ахаль çынсем
çеç пулнине асăрхаса, пуçлăхсемпе ятлă-сумлă
çынсем тĕлĕнсех кайнă. Çавăнтах, кусем Иисуспа
пĕрле çӳренине аса илсен, вĕсене палласа илнĕ.
14 Анчах та Петрпа Иоанн çумĕнче уксах пулнă çын
тăнине курсан, вĕсем нимĕн тавăрса калама та
аптăранă. 15 Вара вĕсем апостолсене синедрионран
тухма хушнă та хăйсем хушшинче канашлама
пуçланă. 16 «Мĕн тумалла ку çынсемпе? – калаçнă
вĕсем. – Иерусалимра пурăнакансем ĕнтĕ пурте
вĕсем чăн-чăн тĕлĕнмелле ĕç тунине пĕлеççĕ.
Пулнă япалана эпир пулман тесе калаймăпăр.
17 Çапах та халăхра тата ытларах сăмах сарăласран

пирĕн вĕсене хăратсах çынсем умĕнче Иисус ячĕ
çинчен каласа çӳреме чармалла». 18 Вара
апостолсене чĕнсе илсе Иисус ятне асăнма та, Унăн
ячĕпе вĕрентме те чарнă. 19 Анчах та Петрпа Иоанн
çапла тавăрса каланă: «Хăвăрах шухăшласа пăхăр-
ха: сире Турăран та ытларах итлени Турă умĕнче
тĕрĕс пулĕ-и? 20 Хамăр курни-илтнине эпир
калаймасăр тăраймăпăр». 21 Вара канашра
ларакансем апостолсене айăплама май тупаймасăр
вĕсене юна-юнах кăларса янă. Тата вĕсем халăхран
хăранă, мĕншĕн тесен пулса иртнĕ ĕçшĕн пурте
Турра мухтанă. 22 Тĕлĕнмелле майпа сывалнă çынни
хĕрĕх урлă каçнăскер пулнă.

### Ĕненекенсем кĕлтуни

23 Кăларса ярсан Петрпа Иоанн хăйсен ушкăнне
тавăрăннă та аслă священниксемпе ятлă-сумлă
çынсем хăйсене мĕн-мĕн каланине пĕтĕмпех
ĕненекенсене каласа кăтартнă. 24 Çавна илтсен
ĕненекенсем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа хыттăн
Турра кĕлтума пуçланă: «Эй, Патша Турăçăм! Эсĕ
тӳпене те, çĕре те, тинĕсе те – вĕсенче мĕн пуррине
те – пĕтĕмпех пултарнă. 25 Эсĕ Хăвăн чуруна, Давид
măн асаттемĕре, Святой Сывлăшупа çапла
калаттарнă: „Чăн Турра пĕлмен халăхсем мĕншĕн
пăлханаççĕ-ши, этемсем мĕншĕн пултарас çука
тытăнчĕç-ши? 26 Çĕр çинчи патшасемпе княçсем
пĕрле пухăнса Хуçа Туррăмăра тата Вăл Суйласа
илнине хирĕç тăчĕç“. 27 Чăнах та акă çак хулара
Иродпа Понтий Пилат, ытти халăхсемпе тата
Израиль халăхĕпе пĕрле пухăнса, Санăн çу сĕрсе
суйласа илнĕ Святой Ывăлна, Иисуса, хирĕç тăчĕç.
28 Мĕн пулмаллине, Эсĕ Хăвăн вăй-хăватупа, Хăвăн
ирĕкӳпе палăртса хунине вĕсем пурнăçларĕç. 29 Эй,
Турăçăм, Эсĕ Хăвăн Святой Ывăлу Иисус ячĕпе
чирлисене сыватма, паллăсемпе хăватсем
кăтартма аллуна Тăсакансker, вĕсем пире юнанине
курсам. Эй, Турăçăм, Хăвăн чурусене Хăвăн сăмахна
вĕрентме хăюлăх парсам». 31 Кĕлтуса пĕтерсенех
вĕсем пухăнса тăнă вырăн чĕтренсе кайнă. Вара
пурин те чун-чĕри Святой Сывлăшпа тулнă. Çавăн
хыççăн вĕсем пурте Турă сăмахне хăюллăнах
вĕрентсе çӳренĕ.

### Пĕрлешӳллĕ пурăнни

32 Ĕненекенсенчен чылайăшĕ пĕр кăмăллă, пĕр
шухăшлă пулса пурăннă. Харпăр пурлăхне
вĕсенчен пĕри те манăн тесе каламан, пурте вĕсен
пĕрле пулнă. 33 Иисус Христос Хуçамăр чĕрĕлсе
тăнине апостолсем хăватланса пĕлтернĕ, вĕсем
пурте Турă тивлечĕллĕ пулнă. 34 Вĕсем хушшинче
çитмен пурăнăçпа пурăнакансем пулман, мĕншĕн
тесен çĕр пуррисем, кил-çуртлисем пурте çавсене
сутнă, вара укçи-тенкине апостолсене панă. Çапла
вĕсем кирек камăн мĕн çитменнине çитерсе тăнă.
36 Тĕслĕхрен, Кипртан пынă пĕр Иосия ятлă левит
пулнă. Ăна апостолсем Варнава тесе ят панă.
(Варнава тени «савăнтаракан ывăл» тенине
пĕлтерет.) 37 Çав Иосия та, хăйĕн çĕрне сутса,
укçине апостолсен ури умне пырса хунă.

### Ананияпа Сапфира

5 Тата Анания ятлă пĕр çын, хăйĕн арăмĕпе
Сапфирăпа калаçса татăлса, пĕтĕм пурлăхне
сутнă. 2 Укçин пĕр пайне Анания хăйĕн валли
уйăрса хăварнă, ун пирки арăмĕ те пĕлсе тăнă.
Юлнă укçине вара апостолсен ури умне пырса хунă.
3 Анчах та Петр ăна çапла каланă: «Анания, çĕр
укçине пытарса хăварса эсĕ Святой Сывлăша
улталас терĕн-им? Хăвăн ăшна çав шухăша кĕртме
мĕншĕн эсĕ шуйттана ирĕк патăн? 4 Çĕрӳ, сутиччен,
хăвăн марччĕ-им вара? Сутса тунă укçупа
хуçаланма та хăвăн ирĕкӳ марччĕ-и? Ултав çулĕ
çине мĕн тăратрĕ-ха сана? Эсĕ халĕ çынсене мар,
Турра улталарăн вĕт-ха!» 5 Çак сăмахсене илтсенех
Анания ӳксе вилнĕ. Çакăн çинчен пĕлнĕ çынсен
пурин те сехри хăпнă. 6 Унтан çамрăксем тăнă та
ăна пытарма хатĕрленĕ, вара илсе кайса пытарнă.
7 Унта мĕн пулса иртнине пĕлмесĕрех тепĕр виçĕ
сехетсенчен çавăнта Анания арăмĕ те пынă.
8 «Кала-ха мана, – ыйтнă унран Петр, – эсир çĕре
çав хака сутрăр-и?» «Çапла, çав хака», – хуравланă
хĕрарăм. 9 Петр ăна каланă: «Епле-ха эсир Хуçа
Туррăн Сывлăшне улталама калаçса татăлтăр? Акă,
упăшкуна пытарса килекенсем алăкран кĕреççĕ,
сана та вĕсем часах йăтса тухĕç». 10 Хĕрарăм
сасартăк ун ури умне тĕшĕрĕлсе аннă, унăн та чунĕ
тухса кайнă. Çамрăксем кĕнĕ те, вăл та сывламасăр
выртнине курса, ăна йăтса тухса упăшки çумнех
кайса пытарнă. 11 Вара ĕненекенсен пĕтĕм ушкăнĕ
те, çавăн çинчен илтнĕ ытти çынсем те питĕ хытă
хăраса ӳкнĕ.

### Паллăсемпе хăватсем

12 Халăх хушшинче апостолсем нумай паллăсемпе
хăватсем кăтартнă. Хăйсем вĕсем пĕр шухăш-
кăмăлпа тăтăшах Соломон притворĕнче
пуçтарăннă. 13 Христоса ĕненменнисем вĕсемпе
çывăхланма хăяйман пулин те, халăх апостолсене
мухтаса калаçнă. 14 Ĕненекенсен йышĕ ӳснĕçемĕн
ӳссех пынă. Нумай арçынпа хĕрарăм Хуçа Турă енне
çавăрăннă. 15 Урампа иртсе пыракан Петрăн мĕлки
те пулин чирлисем çине ӳктĕрччĕ тесе, çынсем
вĕсене урама илсе тухса вырăнĕсем çине
вырттарнă. 16 Çавнашкалах Иерусалима таврари ял-
хуласенчен халăх пырсах тăнă. Вĕсем унта
чирлисене, усал ернисене иле-иле пынă, лешсем
вара пурте сывалнă.

### Апостолсене хĕсĕрлени

17 Аслă священникпа саддукейсен ушкăнĕнчи
çынсен пурин те чĕрисем кĕвĕçӳпе тулса çитнĕ.
18 Вара вĕсем апостолсене тытнă та хура халăх
тĕрмине хуптарнă. 19 Анчах та Хуçа Туррăмăран

ангелĕ çĕрле тĕрме алăкĕсене уçнă та апостолсене
илсе тухса çапла каланă: 20 «Турă Çуртне кайăр та
халăха çак чĕрĕлĕх сăмахĕсене татах вĕрентĕр».
21 Хăйсене каланă пекех, апостолсем ирхине ирех
Турă Çуртне пынă та халăха вĕрентме пуçланă. Çав
ирхинех аслă священникпа унăн çыннисем
синедрион канашĕнче ларакансене пуçтарнă, унта
Израилĕн мĕн пур ятлă-сумлă çыннисене чĕнтернĕ.
Вара тĕрмерен апостолсене илсе пыма хушнă.
22 Анчах та тарçисем, тĕрмене пырсан, апостолсене
тупаймасăрах тавăрăннă. 23 «Тĕрмине шанчăклă
питĕрнĕ, – тенĕ вĕсем тавăрăнсан, – алăкĕсем
умĕнче те хурал тăрать, çакна эпир хамăр
куртăмăр, анчах та уçтартăмăр та – шалта никам та
çук!» 24 Тарçăсен сăмахне илтсен аслă священник,
хурал пуçлăхĕ тата ытти аслă священниксем: «Мĕне
пĕлтерет-ши ку?» – тесе тĕлĕнсех кайнă. 25 Кайран
пĕрскер çавăнта пынă та кусене çапла пĕлтернĕ:
«Хайхи эсир тĕрмене лартнă çынсем Турă Çуртĕнче
халăха вĕрентсе тăраççĕ». 26 Çавăн хыççăн хурал
пуçлăхĕпе тарçисем Турă Çуртне кайнă. Хăйсене
халăх чулпа пере-пере вĕлересрен хăранипе вара
апостолсене ирĕксĕрлемесĕрех илсе пынă.
27 Илсе пырсан вĕсене синедрион канашĕ умне
тăратнă. Вара аслă священник çапла тĕпчесе
ыйтнă: 28 «Çав Çын ячĕпе вĕрентсе ан çӳрĕр тесе
сире çирĕппĕнех асăрхаттармарăмăр-и? Эсир вара
хăвăр вĕрентĕвĕре пĕтĕм Иерусалимĕпе сарса
ятăр, Çав Çын вилнишĕн те пире айăплас тетĕр».
29 Петрпа ытти апостолсем вара çапла тавăрса
каланă: «Турра пăхăнасси этеме пăхăнассинчен
ытларах пулмалла. 30 Эсир йывăç хĕрес çине çакса
вĕлернĕ Иисуса пирĕн мăн асаттемĕрсен Турри
чĕртсе тăратрĕ. 31 Израиль халăхне ӳкĕнтерес тесе,
çылăхĕсене каçарас тесе Турă Ăна, Пуçлăха тата
Çăлакана, Хăйĕн аллипе çĕклесе Хăйĕнчен сылтăм
енне, хисеплĕ вырăна, лартрĕ. 32 Çакна курса
çирĕплетекенсем – эпир хамăр тата Турă Хăйне
пăхăнакансене панă Святой Сывлăш».
33 Çакна илтсен синедрион канашĕнчисем урса
кайнипе апостолсене вĕлерес тесе те шухăшланă.
34 Вĕсем хушшинче Моисей саккунне вĕрентекен
пĕр Гамалиил ятлă фарисей та пулнă. Халăх ăна
питĕ хисепленĕ. Çавă вара канаш умне тухса тăнă
та апостолсене вăхăтлăха синедрионран илсе
тухма ыйтнă. 35 Кайран хăй канашра ларакансене
çапла каланă: «Эй, Израиль çыннисем! Çак çынсене
мĕн тăвасси пирки лайăхрах шухăшласа пăхăр.
36 Нумаях та пулмасть хăйне аслă çын вырăнне
хуракан пĕр Февда ятлăскер сиксе тухнăччĕ. Ун
тавра тăватă çĕре яхăн çын та пуçтарăннăччĕ.
Анчах та ăна вĕлерсен, унăн ушкăнĕнчисем пурте
саланса пĕтрĕç. 37 Унтан кайран, халăх шутне
çыртарнă чухне, Галилейăри Иуда палăрчĕ. Вăл та
чылай çынна хăй майлă çавăрчĕ. Анчах хăй те
пуçне çирĕ, ун хыççăн кайнисем те саланса пĕтрĕç.
38 Çавăнпа ĕнтĕ халĕ сире калатăп: ку çынсем çумне
ан çулăхăр, ярăр вĕсене. Мĕншĕн тесен вĕсем
тытнă шухăш, вĕсем тăвакан ĕç этемрен пулсан,
вăл хăйне хăех пĕтĕ. 39 Турăран пулсан, эсир ăна
пĕтерейменĕр. Асăрханăр, Турра хирĕç пыракан
çынсем пулса тăмалла ан пултăрччĕ сирĕн».
40 Вĕсем вара Гамалиила итленĕ. Апостолсене чĕнсе
кĕрттернĕ те вĕсене чĕн пушăпа хĕнеттернĕ. Унтан,
Иисус ячĕпе вĕрентсе çӳреме чарса, кăларса янă.
41 Иисус Хуçамăр ячĕшĕн хур курма тивĕç
пулнишĕн савăнса апостолсем синедрионран тухса
кайнă. 42 Хăйсем вара куллен Турă Çуртĕнче те,
килсенче те вĕрентме, Иисус Христос çинчен Ырă
Хыпар пĕлтерме чарăнман.

## Çичĕ пулăшакана суйлани

6 Вĕренекенсем йышлансах пынă. Грекланнă
еврейсем çав кунсенче Иудейăри еврейсене
ӳпкелешме пуçланă. Кулленхи пая валеçнĕ чухне
пирĕн тăлăх арăмсене кӳрентеретĕр тенĕ вĕсем.
2 Вара Вун иккĕшĕ мĕн пур вĕренекенсене пухăва
чĕнсе çапла каланă: «Турă сăмахне вĕрентме
пăрахсах апат-çимĕç валеçме пире аван мар.
3 Çавăнпа та, тăвансем, хăвăр хушшăртан
шанчăклă, Святой Сывлăшпа хăватланнă тата ăслă
çичĕ çынна суйлăр. Çак ĕçе туса пыма вĕсене
шанса парăпăр. 4 Эпир хамăр вара ялан кĕлтуса,
Турă сăмахне вĕрентсе пурăнăпăр». 5 Çак сĕнĕве
пухăннисем пурте ырланă. Вара вĕсем çирĕп
ĕненекен, Святой Сывлăшпа хăватланнă Стефана,
унпа пĕрлех Филипа, Прохора, Никанора, Тимонпа
Пармена тата Антиохияри Николая суйланă. Еврей
мар пулин те, Николай маларах иудей тĕнне тытса
пынă пулнă. 6 Вĕсене апостолсем умне тăратнă.
Апостолсем кĕлтуса вĕсем çине аллисене хунă.
7 Турă сăмахĕ сарăлнăçем сарăлса пынă.
Иерусалимра Иисус вĕренекенĕсен шучĕ хăвăрт
ӳссе кайнă. Чылай священник та çак ĕненĕве
йышăннă.

## Стефана тытни

8 Стефан ятлă çирĕп ĕненӳллĕ те вăйлă чун
хаваллĕ çын халăх хушшинче чăн-чăн тĕлĕнмелле
ĕçсемпе хăватсем кăтартнă. 9 Пĕр синагогăна
çӳрекен çынсем Стефанпа тавлашса кайнă. Çав
синагогăна „Ирĕклисен синагоги“ те тенĕ.
Иудейсем унта Киринейăран та, Александрияран
та, Киликирен те, Асирен те çӳренĕ. 10 Анчах та
Стефан ăслă калаçнăран вĕсем ăна çĕнтереймен,
мĕншĕн тесен Стефана Святой Сывлăш Хăй мĕн
каламаллине пĕлтерсех тăнă. 11 Вара çаксккерсем
хăш-пĕр çынсене Стефан Турра та, Моисея та
хурланине хамăр илтрĕмĕр тесе калама ӳкĕте
кĕртнĕ. 12 Çапла хăтланса çак синагогăна
çӳрекенсем халăха та, ятлă-сумлă çынсене те,
саккун вĕрентӳçисене те хĕтĕртсе янă. Вара лешсем
Стефана ярса тытнă та синедриона илсе кайнă.
13 Вĕсем çавнашкалах суйса айăп кăтартакансем те
хатĕрленĕ. «Ку çын Турă Çурчĕ ларакан сăваплă

вырăна та, Моисей саккунне те пĕрмаях хурлать, –
тенĕ çавскерсем. 14 – Назорей Иисус Турă Çуртне те
аркатĕ, Моисейран килекен йăла-йĕркесене те
улăштарĕ, тесе каланине хамăр хăлхапа хамăр
илтрĕмĕр». 15 Синедрионра ларакансем Стефан
çине тинкеререх пăхнă та – унăн сăнĕ ангелăнни
пек çуталса тăнине асăрханă.

### Стефан синедрион канашĕнче каланă сăмах

7 Çавăн чухне аслă священник Стефанран:
«Сана тĕрĕсех айăпласçĕ-и?» – тесе ыйтнă.
2 Вара Стефан каланă: «Эй, тăван çынсем! Сумлă
ватăсем! Итлесемĕр мана. Мухтав Турри пирĕн
Авраам мăн асаттемĕре Харрана куçса кайиччене,
Месопотамирех курăннă. 3 „Хăвăн çĕр-шывунтан,
тăвану-хурăнташу хушшинчен, açу килĕнчен тух та,
Эпĕ сана кăтартнă çĕр-шывалла кай“, – тенĕ çавăн
чухне ăна Турă. 4 Вара вăл Халдея çĕрĕнчен куçса
пырса Харранта вырнаçнă. Ашшĕ вилсен, Турă
Авраама çак халĕ эсир пурăнакан çĕр-шыва илсе
çитернĕ. 5 Кунта ăна Турă ура лаппи чухлĕ те çĕр
паман. Анчах та, Авраамăн ачи-пăчи пулман
чухнех, Турă ăна çак çĕр-шыва хăйне те, ачисене те
яланлăха парасса шантарнă. 6 Турă ăна çапла
каланă: „Санăн йăх-тăхăмусем ют çĕре куçса кайĕç,
тăватă çĕр çула яхăн вĕсем чура пулса, хĕсĕрленине
тӳссе пурăнĕç. 7 Анчах та Эпĕ, – тенĕ Турă, – вĕсене
чуралăхра усракан халăха айăплăп. Вара вĕсем çав
çĕр-шывран тухса çак вырăнта мана пуççапса
пурăнĕç“. 8 Вара, халалланине палăртма, ăна ӳт
кастарма хушнă. Çапла вара, Исаак çуралсан,
саккăрмĕш кун унăн ӳтне кастарнă. Исаакран Иаков
çуралнă, Иаковран вун икĕ ăру пуçĕ çуралнă.
9 Хайхи ăру пуçĕсем, кĕвĕçсе, Иосиф ятлă
пĕртăванне Египета чуралăха сутнă, анчах Турă
унпа пĕрле пулнă. 10 Турă унăн мĕн пур хуйхи-
суйхине сирнĕ, ăна вичкĕн ăс панă, Египет патшин,
фараонăн, кăмăлне ун енне çавăрнă. Вара фараон
Иосифа Египет çĕрне те, патша керменне те пăхса
тăракан пуçлăха лартнă. 11 Кайран Египетпа Ханаан
çĕрĕсенче выçлăх пуçланнă, питĕ пысăк инкек
çитнĕ. Мăн асаттемĕрсем выçса вилмех пуçланă.
12 Вара Иаков Египетра тырă пур тенине илтсе
хăйĕн ывăлĕсене унта малтанхи хут янă.
13 Иккĕмĕш хут пырсассăн тин Иосиф тăванĕсене
хăй кам пулнине уçса панă. Çапла майпа Иосиф
ăрăвĕ çинчен фараон та пĕлнĕ. 14 Иосиф вара хăйĕн
ашшĕне Иакова тата тăванĕсене чĕнтерсе пынă.
Вĕсем пурĕ çитмĕл пиллĕкĕн пулнă. 15 Çапла Иаков
Египета куçса кайнă. Иаков та, унăн ывăлĕсем те
виличченех унта пурăннă. 16 Вĕсен ӳчĕсене Сихема
илсе тавăрăннă, тупăклăха хунă. Çав тупăклăха
Авраам Сихемри Еммор ывăлĕсенчен кĕмĕл парса
сутăн илнĕ пулнă.
17 Турă Авраама тупа туса сăмах панин
пурнăçланас вăхăчĕ çывхарнăçемĕн Египетра халăх
нумайлансах, йышлансах пынă. 18 Иосифа пĕлмен
урăх фараон престол çине ларичченех халăх йышĕ
çапла ӳссе пынă. 19 Ку патша вара пирĕн халăха
кураймасăр чеен хăтланнă: çуралса пыракан
ачасене вилме кайса пăрахтарса, вăл мăн
асаттемĕрсене питĕ хĕсĕрленĕ. 20 Шăпах çав
вăхăтра Моисей çуралнă, вăл Турра та килĕшмелле
хитре ача пулнă. Ашшĕ килĕнче ăна виçĕ уйăха
çитиччен пăхса усранă. 21 Кайран, кайса
пăрахтарсан, ăна фараон хĕрĕ усрава илнĕ те
хăйĕн ывăлĕ пекех пăхса ӳстернĕ. 22 Моисея
Египетри мĕн пур ăслăлăха вĕрентсе çитĕнтернĕ;
вăл сăмахĕпе те, ĕçĕпе те хăватлă пулнă.
23 Хĕрĕх çул тултарсан унăн хăйĕн тăванĕсене,
Израиль ывăлĕсене, кайса курас шухăш кĕнĕ.
24 Унта çитсен пĕрне пусмăрланине курнă та ун
хутне кĕнĕ. Хур кăтартнăшăн тавăрса вăл Египет
çыннине вĕлернĕ. 25 Турă унăн аллипе çăлăнăç илсе
килнине тăванĕсем ăнланĕç тесе шухăшланă вăл,
анчах тăванĕсем ăнланайман. 26 Тепĕр кунне
Моисей еврей çынниех еврейпа çапăçнине курнă.
Вăл вĕсене çураçтарма тăрăшнă. „Эсир тăвансем-
çке-ха, – тенĕ Моисей, – мĕншĕн пĕр-пĕрне
кӳрентеретĕр?“ 27 Çавăн чухне вĕсенчен пĕри
Моисея аяккалла тĕртсе янă. „Пирĕн пуçлăх, пирĕн
судья пулма сана кам ирĕк пачĕ? – тенĕ вăл. 28 –
Ĕнер Египет çыннине вĕлернĕ пек мана та
вĕлересшĕн мар-и-ха эсĕ?“ 29 Çак сăмахсене илтсен
Моисей Мадиам çĕрне тарса кайнă, ютран пынă
çын пулса пурăннă. Мадиамра унăн икĕ ывăл
çуралнă.
30 Хĕрĕхрен иртсен ăна Синай тăвĕ çумĕнчи пуш
хирте, çунса тăракан кӳкен тĕмми ăшĕнче, Хуçа
Туррăмăрăн ангелĕ курăннă. 31 Çакна курсан
Моисей питĕ тĕлĕннĕ. Лайăхрах сăнас тесе
патнерех пырсан вара ăна Хуçа Туррăмăрăн сасси
илтĕннĕ: 32 „Эпĕ – санăн мăн аслаçусен Турри;
Авраам Турри, Исаак Турри, Иаков Турри“. Моисей,
хăранипе чĕтресе, пуçне çĕклесе пăхма та хăяйман.
33 Вара Хуçа Турă ăна çапла каланă: „Урунти
пушмакна хыв, мĕншĕн тесен эсĕ тăракан вырăн –
сăваплă çĕр. 34 Хамăн халăхăма Египетра
пусмăрланине Эпĕ куратăп, вăл йынăшнине
илтетĕп. Эпĕ ăна хăтармашкăн антăм. Халĕ ĕнтĕ
каях, Эпĕ сана Египета яратăп“. 35 „Сана кам пирĕн
пуçлăха, пирĕн судьяна лартрĕ?“ – тесе çынсем
йышăнман хайхи Моисея, кӳкен тĕмми ăшĕнче ăна
курăннă ангел урлă, Турă пуçлăх тата хăтаракан
туса янă. 36 Çав Моисей халăха Египетран илсе
тухнă. Вăл Египетра, Хĕрлĕ тинĕс хĕрринче тата
хĕрĕх çула яхăн пуш хирте, тĕрлĕрен паллăсемпе
хăватсем кăтартнă. 37 Шăпах çав Моисей Израиль
çыннисене каланă: „Мана пророка кăларнă пекех
Хуçа Туррăр сирĕн валли хăвăр хушшăртанах
Пророк кăларĕ. Ăна итлĕр“. 38 Шăпах çав Моисей
пушă хирте пуçтарăннă мăн асаттемĕрсемпе пĕрле
пулнă. Пире пĕлтермешкĕн вăл Синай тăвĕ çинче
ангелран чĕрĕлĕх сăмахĕсене илнĕ. 39 Анчах мăн
асаттемĕрсем ăна итлемен, чун-чĕрипе йышăнман.
Вĕсем каялла Египета тавăрăнасшăн пулнă.

[40] Çавăнпа вĕсем Аарона каланă: „Пире хамăра
ертсе пыракан турăсем туса парсамччĕ. Мĕншĕн
тесен хамăра Египетран илсе тухнă Моисея мĕн
пулнине эпир пĕлместпĕр“. [41] Çавăн чухне вĕсем,
пăру евĕрлĕ кĕлетке туса, ăна чӳкленĕ. Унтан,
хăйсем мĕн тунине курса, савăнса уявланă. [42] Турă
вара вĕсене пăрахнă, тӳпери хăватсене пуççапма та
чарман. Пророксен кĕнекинчех ун пирки çапла
çырнă: „Эй, Израиль йăхĕ! Пуш хирте хĕрĕх çул
хушшинче эсир Маншăн выльăх пусрăр-и,
парнелĕхе кӳтĕр-и? Пусмарăр. [43] Эсир хăвăрпа
пĕрле Молоха кĕлтумалли чатăра, хăвăрăн Ремфан
туррăр çăлтăрне илсе çӳрерĕр. Пуççапса
пурăнмашкăн эсир хăвăр валли хăвăр кĕлеткесем
турăр, çавăнпа Эпĕ сире Вавилонран та аяккарах
куçарса ярăп“.
[44] Пирĕн мăн асаттесен пуш хирте кĕлĕ тумалли
пуху чатăрĕ пулнă. Çав чатăра епле тумаллине
Моисея Турă каланă, ăна тĕслĕхне те кăтартнă.
[45] Мăн асаттесем çав чатăра Иисус Навин ертсе
пынипе çĕнĕ çĕрсем çине куçарнă. Унта урăх
халăхсем пурăннă пулнă, Турă вĕсене мăн
асаттесен куçĕ умĕнчех хăваласа янă. Чатăрĕ вара
çавăнта Давид вăхăтĕччченех ларнă. [46] Давид Турă
умĕнче тивлетлĕ пулнă, Иаков Турри валли çурт
тăвасчĕ тесе кĕлтунă. [47] Соломон вара Ун валли
çурт туса лартнă. [48] Анчах та, пророк каланă пек,
Çӳлти Турă çын тунă çуртра пурăнмасть. Пророк
çапла каланă: [49] „Манăн престол – тӳпе, Манăн ура
айĕ – çĕр. Ман валли эсир мĕнле çурт туса парайăр?
– тет Хуçа Туррăмăр. – Эпĕ канас вырăна ăçта
тăвайăр? [50] Мĕн пуррине йăлтах Манăн аллăм
пултарман-им вара?“ [51] Эй, эсир, кутăн çынсем!
Уçăлман чун-чĕреллĕ, мăкланнă хăлхаллă çынсем!
Эсир, мăн аслаçăрсем пекех, яланах Святой
Сывлăша хирĕçлетĕр. [52] Сирĕн мăн аслаçăрсем
пророксенчен хăшне хĕсĕрлемен? Тӳрĕлĕхли
килессине малтанах каласа хунă пророксене вĕсем
вĕлернĕ. Халĕ эсир Ăна Хăйне тытса парса
вĕлертĕр! [53] Ангелсем пулăшнипе сире саккун
панăччĕ, анчах эсир вăл саккуна пăхăнас темерĕр».

## Стефана вĕлерни

[54] Çак сăмахсене илтсен синедрионра ларакансем
урсах кайнă, шăлĕсене шатăртаттара пуçланă.
[55] Чун-чĕри Святой Сывлăшпа тулнă Стефан вара
çӳлелле пăхнă та Туррăн мухтавлăхне тата Туррăн
сылтăм енче тăракан Иисуса курнă. [56] Вăл вара
каланă: «Авă, эпĕ тӳпе уçăлса кайнине тата Туррăн
сылтăм енче тăракан Этем Ывăлне куратăп».
[57] Çакна илтсен тарăхса-кăшкăрашса, Стефан
сăмахĕсене итлес мар тесе хăлхисене хупласа пурте
ун çине сиксе ӳкнĕ. [58] Унтан ăна хуларан илсе тухнă
та чулпа пере-пере вĕлере пуçланă. Айăп
кăтартакансем хăйсен çиелти тумтирĕсене Савл
ятлă çамрăк ури умне хывса хунă та [59] Стефана
чулпа пеме пуçланă. «Эй, Иисус Хуçамăр! Ман
чунăма йышăнсам!» – тесе кĕлтунă Стефан. [60] Унтан,
чĕркуçленсе ларса, кăшкăрса янă: «Эй, Турăçăм,
вĕсен çак çылăхне шута ан илсем!» Çапла
каласанах вăл вилсе кайнă.

## Христоса ĕненекенсене хĕсĕрлени

8 Стефана вĕлернине Савл ырланă. Çав
кунсенче Иерусалимри ĕненекен ушкăна питĕ
хĕсĕрлеме пуçланă. Апостолсемсĕр пуçне ытти
ĕненекенсем пурте Иудейăпа Самарири тĕрлĕ
çĕрсене тарса, сапаланса пĕтнĕ. [2] Ырă çынсем вара
хăйсем хисепленĕ Стефана пытарнă, уншăн
кулянса питĕ хытă йĕнĕ. [3] Савл килрен-киле çӳренĕ,
арçынсемпе хĕрарăмсене сĕтĕре-сĕтĕре тухса
тĕрмене хуптарнă. Çапла вăл ĕненекен ушкăна тĕп
тума тăрăшнă. [4] Тĕрлĕ çĕре саланнă ĕненекенсем
çав хушăра Турă сăмахне вĕрентсе çӳренĕ.

## Филипп Самарире вĕрентсе çӳрени

[5] Çапла Филипп Самарири пĕр хулана пынă та
унта Христос çинчен ӳкĕтлесе вĕрентнĕ. [6] Филипп
кăтартакан хăватсене курса-илтсе халăх унăн
вĕрентĕвне пĕр кăмăллăн тăнланă. [7] Мĕншĕн тесен
усал ернĕ чылай çын ăшĕнчен усал сывлăшсем
кăшкăра-кăшкăра тухса тарнă, параличь çапнисем
тата уксах-чăлахсем сывалнă. [8] Хула халăхĕ
савăнмаллипех савăннă.
[9] Çав хулара Симон ятлă пĕр çын пурăннă, хăйне
вăл темĕнле аслă çын вырăннех хунă. Çавскер
тухатса-асамласа Самари халăхне тĕлĕнтерсе
пурăннă. [10] Пĕчĕккисенчен пуçласа çитĕннисем
таранах – пурте ăна итленĕ. «Ку çынра Турă хăвачĕ
пур», – тесе калаçнă вĕсем. [11] Тахçантанпах хăйĕн
тухатăвĕсемпе тĕлĕнтернĕрен халăх унăн
сăмахĕсене тимлесе итленĕ. [12] Анчах та Филипп
Турă Патшалăхĕпе Иисус ячĕ çинчен Ырă Хыпар
пĕлтернине илтсен арçынсем те, хĕрарăмсем те
унăн ӳкĕтне ĕненсе шыва кĕнĕ. [13] Симон хăй те
ĕненме пуçланă. Шыва кĕрсен вара Филипран
хăпмасăрах çӳренĕ. Филипп кăтартакан аслă
хăватсемпе паллăсене хăй куçĕпе хăй курса Симон
питĕ тĕлĕннĕ. [14] Самари çыннисем Турă сăмахне
йышăннине илтсен, Иерусалимри апостолсем
вĕсем патне Петрпа Иоана янă. [15] Кусем пынă та,
Самари çыннисем те Святой Сывлăш илччĕр тесе,
вĕсемшĕн кĕлтунă. [16] Мĕншĕн тесен вĕсенчен
пĕрин çине те Святой Сывлăш анман пулнă-ха,
вĕсене Иисус Хуçамăр ячĕпе шыва çеç кĕртнĕ
пулнă. [17] Петрпа Иоанн вĕсем çине аллисене хурсан
тин вĕсен чун-чĕрисем Святой Сывлăшпа тулнă.
[18] Апостолсем алă хунипе Святой Сывлăш аннине
курсан, Симон вĕсем патне укçа илсе пынă. [19] «Ку
хăвата мана та парăр-ха, – тенĕ вăл. – Эпĕ алă хунă
çын та Святой Сывлăш илме пултартăрччĕ».
[20] Анчах та Петр ăна çапла каланă: «Турă тивлетне
укçалла илме пулать тесе шутлатăн пулсан, хăвăн
укçу хăвăнпах пĕттĕр. [21] Турă умĕнче санăн чун-
чĕрӳ таса мар-ха, çавăнпа та эпир тăвакан ĕçе тума

санăн пай та, тивĕç те çук. 22 Ĕнтĕ çак çылăхунтан
ӳкĕн те Турра кĕлту, вара, тен, чун-чĕрӳнти йăнăш
шухăшу каçарăнĕ. 23 Мĕншĕн тесен чуну ват
йӳççипе тулнине, усаллăх тыткăнне лекнине эпĕ
курсах тăратăп». 24 Симон вара çапла хуравланă:
«Хăвăр каланисем мана ан çитчĕр тесе, эсир
маншăн та Хуçамăра кĕлтусамăрччĕ». 25 Апостолсем
вара Хуçамăр сăмахне çирĕплетсе пĕлтерсе,
вĕрентсе çӳренĕ хыççăн каллех Иерусалима
тавăрăннă. Çула май Самари тăрăхĕнчи ялсенче те
Ырă Хыпара ӳкĕтлесе вĕрентнĕ.

### Филиппа Эфиопи улпучĕ

26 Хуçа Туррăмăрăн ангелĕ Филипа каланă: «Тăр та
кăнтăралла кай. Унтан Иерусалимран Газăна
каякан пушă çул çине тух». 27 Филипп çапла тунă та.
Çул çинче вăл пĕр Эфиопи улпутне, евнуха, тĕл
пулнă. Çав улпут Эфиопири Кандакия ятлă хĕрарăм
патшан пĕтĕм пуянлăхне пăхса тăраканĕ пулнă. Вăл
Иерусалима Турра пуççапма кайнă пулнă. 28 Каялла
вăл хăйĕн урапипех тавăрăннă. Ларса пынă çĕртех
вăл Исаия пророк кĕнекине вуласа пынă. 29 «Çак
урапапа юнашар ут», – тенĕ Святой Сывлăш
Филипа. 30 Вăл урапа патне пынă та хайхи Эфиопи
çынни Исаия пророк кĕнекине сасăпах вуланине
илтнĕ. «Ху мĕн вуланине ăнланатăн-и эсĕ?» – тесе
ыйтнă унран Филипп. 31 «Никам та ăнлантарса
памасăр епле ăнланаям?» – тавăрнă лешĕ. Унтан
вăл Филипа хăйпе юнашар урапа çине ларма
сĕннĕ. 32 Çырнинче вăл вулакан вырăн çакă пулнă:
„Ăна сурăха пусма илсе пынă пек илсе пынă. Вăл,
çăмне касакан умĕнче сассăр выртакан путек пек,
ним те шарламан. 33 Ăна, мĕскĕнлетсе, тĕрĕс суд та
туман. Унăн йăхĕ-тăхăмĕ пирки вара кам тата мĕн
калайĕ? Унăн пурăнăçĕ çĕр çинчен илĕннĕ ĕнтĕ“.
34 «Кала-ха, çакăнта пророк кам çинчен каланă: хăй
çинчен-и е урăххи çинчен?» – ыйтнă Филипран
евнух. 35 Вара Филипп ăна Çырнинчи çак вырăна
ăнлантарса пама пуçланă та Иисус çинчен Ырă
Хыпар пĕлтернĕ. 36 Çапла малалла кайса вĕсем пĕр
юхан шыв хĕррине çитнĕ. «Кур-ха, – тенĕ евнух, –
акă шыв. Мана тĕне кĕме юрать-и?» 37 «Пĕтĕм чун-
чĕрӳнтен ĕненетĕн пулсан, юрать», – тавăрнă ăна
Филипп. Лешĕ вара каланă: «Иисус Христос Турă
Ывăлĕ пулнине ĕненетĕп ». 38 Вара вăл кӳмине
чарма хушнă. Унтан Филиппа евнух иккĕшĕ те шыв
хĕррине аннă та, Филипп ăна тĕне кĕртнĕ. 39 Вĕсем
шывран тухсанах евнух çине Святой Сывлăш аннă,
Филипа вара Хуçа Туррăмăрăн ангелĕ çавăнтан
илсе кайнă та вăл евнуха курăнми пулнă. Унтан
евнух савăна-савăна малалла çул тытнă. 40 Филипп
пăхать те – хăй Азот хулинче иккен. Вара вăл
Кесарине çитиччен çула май çывăхри хуласенче
Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳренĕ.

### Савл Иисуса ĕненме пуçлани

9 Хуçамăрăн вĕренекенĕсене чун-чĕререн
курайманнипе, вĕлерме те хатĕр пулнипе Савл
аслă священник патне пынă. 2 Вара унран
Дамаскри синагогăсенче кăтартма çырусем ыйтса
илнĕ. Çав çырусем Савла Иисус вĕрентĕвĕ хыççăн
каякансене, арçынĕсемпе хĕрарăмĕсене те,
йĕрлесе тупма, вĕсене сăнчăрласа Иерусалима
илсе пыма ирĕк панă. 3 Анчах та çул çинче, Дамаска
çитесси инçех те мар юлсан, ăна сасартăк тӳперен
çутă çутатса янă. 4 Вăл çĕре ӳкнĕ. Унтан ăна: «Эй,
Савл, Савл! Эсĕ мĕншĕн Мана хĕсĕрлетĕн?» – текен
сасă илтĕннĕ. 5 «Кам пултăн Эсĕ?» – тенĕ вăл.
Хуçамăр ăна хирĕç тавăрнă: «Эпĕ – эсĕ хĕсĕрлекен
Иисус. Çĕнме çук вăя хирĕç ан пыр, хăвнах йывăр
пулĕ». «Турăçăм, мĕн тума хушатăн мана?» – ыйтнă
чĕтресе-хăраса ӳкнипе Савл. «Тăр та хулана кай,
мĕн тумаллине сана унта калĕç», – тенĕ ăна
Хуçамăр. 7 Савлпа пĕрле пыракан çынсем никам
курăнмасăрах сасă илтĕннĕрен шак хытса кайнă.
8 Унтан Савл ура çине тăнă, анчах куçĕсем уçах
пулин те, нимĕн те курман. Вара ăна Дамаска
аллинчен çавăтса илсе кайнă. 9 Виçĕ кун хушши вăл
нимĕн те курман; çимен те, ĕçмен те.
10 Дамаскра Анания ятлă пĕр ĕненекен пурăннă.
«Анания», – тенĕ ăна Хуçамăр куçа курăнса.
«Турăçăм, эпĕ Санăн умăнта», – тенĕ вăл. 11 Хуçамăр
ăна çапла каланă: «Тăр та Тӳрĕ урама кай. Çав
урамри Иуда килĕнче Савл ятлă Тарс çыннине ыйт.
Вăл халĕ кĕлтăвать. 12 Хăй патне Анания ятлă пĕр
çын пырасси, çав çын алă хурсассăн тин куçĕ
куракан пуласси ăна ĕнтĕ курăнчĕ». 13 «Турăçăм! –
тенĕ Анания, – эпĕ Савл çинчен, вăл Иерусалимри
Санăн сăваплă çыннусене мĕн чухлĕ усал туни
çинчен нумай çынран илтнĕ. 14 Кунта та вăл аслă
священниксенчен çыру илсе килнĕ. Çав хут тăрăх,
Санăн ятна асăнакансене тытса çыхмашкăн унăн
ирĕк пур». 15 Анчах та Хуçамăр ăна каланă: «Каях,
вăл çын – Эпĕ суйласа илнĕскер. Вăл Манăн ятăма
ытти халăхсене, патшасене, Израиль çыннисене
пĕлтерекен пулĕ. 16 Эпĕ Хамах ăна Ман ятăмшăн
мĕн чухлĕ асап тӳсмеллине те кăтартăп». 17 Анания
хăйне каланă çурта кайса шыраса тупнă. «Савл
тăванăм! – тенĕ вăл пӳрте кĕрсен, ун çине аллине
хурса. – Эсĕ çулпа пынă чух сана курăннă Иисус
Хуçамăр санăн куçна уçма тата чун-чĕрӳне Святой
Сывлăшпа тултарма мана ячĕ». 18 Çавăнтах, темле
каркăç сирĕлнĕ пекех, унăн куçĕсем куракан пулнă.
Çав кун вара Савл тĕне кĕнĕ. 19 Çинĕ хыççăн ăна вăй
та кĕнĕ.

### Савл Дамаскра вĕрентни

Вĕренекенсемпе пĕрле Савл Дамаскра темиçе кун
пурăннă. 20 Вăл тӳрех синагогăсенче Иисус вăл –
Турă Ывăлĕ тесе вĕрентме пуçланă. 21 Итлекенсем
вара пурте тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе каланă: «Иисус

ятне асăнакансене Иерусалимра хĕсĕрлекенни çак
çын мар-и вара? Вăл кунта та вĕсене тытса çыхса
аслă священник патне илсе кайма килменччĕ-им?»
[22] Савлăн ĕненĕвĕ çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе
пынă. Вăл çине тăрсах Иисус – Турă Суйласа илни
тесе вĕрентнĕ, Дамаскри иудейсем ăна нимĕнпе те
хирĕçлеме пултарайман. [23] Тепĕртакран иудейсем
Савла вĕлерме кавар тунă. [24] Вĕсем ăна вĕлерес
тесе кунĕн-çĕрĕн хапха умĕнче сыхласа тăнă. Анчах
та Савл вĕсен шухăшне пĕлнĕ. [25] Иисус
вĕренекенĕсем ăна çĕрле хула хӳми тăрăх лăпă
çине лартса антарнă.

### Савл Иерусалимра

[26] Дамаскран кайсан Савл Иерусалима пынă. Унта
вăл Иисус вĕренекенĕсемпе çывăхланасшăн
тăрăшнă, анчах та пурте унран хăранă, вăл чăнах
та Христос вĕренекенĕ пулнине шанман. [27] Варнава
вара ăна апостолсем патне çавăтса пынă. Вăл
Савла çул çинче Хуçамăр курăннине те, Хуçамăр
ăна мĕн каланине те, Иисус ячĕпе Савл Дамаскра
епле хăюллăн ӳкĕтлесе вĕрентнине те вĕсене
каласа кăтартнă. [28] Вара Савл вĕренекенсемпе
хутшăнса пурăннă. Вăл Иерусалимра Иисус
Хуçамăр çинчен уççăнах, хăюллăн вĕрентсе çӳренĕ.
[29] Савл грекланнă еврейсемпе те калаçнă,
тавлашнă. Лешсем ăна вĕлересшĕн те пулнă.
[30] Çавна пĕлсен ĕненекен тăванĕсем ăна Кесарине
янă, унтан Тарса ăсатнă.
[31] Пĕтĕм Иудейăри, Галилейăри, Самарири
ĕненекен ушкăнсемшĕн лăпкă пурăнăç пуçланнă.
Ĕненекенсем Турă сăмахне вĕренсе, Хуçа Турăран
хăраса пурăннă. Святой Сывлăш хастарлăх панипе
вĕсен йышĕ ӳссех пынă.

### Энея сыватни

[32] Ĕненекен ушкăнсене кайса çӳренĕ чухне
пĕррехинче Петрăн Лиддăри ĕненекенсем патне
çитсе курма тӳр килнĕ. [33] Çавăнта сакăр çул хушши
вырăнпа выртакан, паралич çапнă Эней ятлă пĕр
çын пулнă. [34] «Эней, вырăну çинчен тăр, сана Иисус
Христос сыватать», – тенĕ ăна Петр. Вăл вара çав
самантрах ура çине тăнă. [35] Лидда хулипе Сарон
айлăмĕнче пурăнакансем пурте сывалнă çынна
курнă, вара Хуçа Туррăмăра ĕненме пуçланă.

### Тавифа

[36] Иоппире Тавифа ятлă пĕр хĕрарăм, Иисус
вĕренекенĕ, пурăннă. Тавифа тени «хир качаки»
тени пулать. Çав хĕрарăм яланах ырă тума
тăрăшнă, чухăнсене пулăшнă. [37] Анчах пĕррехинче
Тавифа хытă чирлесе ӳкнĕ те вилсе кайнă. Ăна вара
çуса хăтлă пӳлĕме хунă. [38] Петр апостол ун чухне
Лиддăра пулнă. Лидда Иоппирен инçех пулман
пирки ĕненекенсем Петр патне икĕ çынна янă,
вĕсем ăна хăвăртрах хăйсем патне пыма чĕннĕ.
[39] Петр вĕсемпе пĕрлех кайнă. Çитсенех ăна хăтлă
пӳлĕме илсе кĕнĕ. Куççульленнĕ тăлăх арăмсем
Тавифа хăйсем валли çĕленĕ кĕпе-тумтире Петра
кăтартма пуçланă. [40] Петр пурне те пӳлĕмрен тухма
хушнă та чĕркуçленсе ларса кĕлтунă. Унтан вăл
вилнĕ хĕрарăм енне çавăрăнса каланă: «Тавифа,
тăр!» Вара хайхи хĕрарăм куçне уçнă та, Петра
курсан, тăрса ларнă. [41] Петр ăна аллинчен тытса ура
çине тăма пулăшнă. Кайран вăл ĕненекен
тăвансемпе тăлăх арăмсене кĕме хушнă, лешсем
кĕнĕ те чĕрĕ-сывă Тавифăна курнă. [42] Çакăн çинчен
пĕтĕм Иоппире сăмах сарăлнă, вара чылайăшĕ
Хуçамăра ĕненме пуçланă. [43] Петр Иоппире, тир
тăвакан Симон ятлă пĕр çын патĕнче, самаях
пурăннă.

### Петрпа Корнилий

10 Кесарире тăракан Итали полкĕ текен полкра
Корнилий ятлă пĕр çĕрпӳ пулнă. [2] Вăл хăй те,
унăн кил-йышĕ те Турра хисеплесе, Турăран хăраса
пурăннă. Корнилий халăхшăн нумай ырă ĕç тунă,
тăтăшах Турра кĕлтунă. [3] Пĕррехинче, кăнтăрла
иртни виçĕ сехет тĕлнелле, ăна уççăнах Туррăн
ангелĕ курăннă. Ангел ун патне пынă та:
«Корнилий!» – тенĕ. [4] Ăна курсан Корнилий хăраса
каланă: «Мĕн-ши, ырă çыннăм?» Ангел ăна каланă:
«Турă санăн кĕллӳне те, эсĕ чухăнсене пулăшнине
те асăрхарĕ. [5] Халĕ вара Петр текен Симона чĕнме
Иоппине çынсем яр. [6] Вăл тир тăвакан Симон ятлă
пĕр çын патĕнче, тинĕс хĕрринчи çуртра, хăна
пулса пурăнать. Петр сана та, кил-йышна та
çăлăнăç сăмахĕсем калĕ ». [7] Хăйпе калаçнă ангел
курăнми пулсан, Корнилий икĕ тарçине тата
шанчăклă, Турра хисеплекен хăйĕн пĕр салтакне
чĕнсе илнĕ. [8] Вара, мĕн пулса иртнине йăлтах
каласа кăтартса, вĕсене Иоппине янă.

### Петра курăнни

[9] Тепĕр кунне, хайхи тарçăсемпе салтак хула
патне çывхарнă чухне, Петр кăнтăрлахи кĕлĕ тума
хăтлă пӳлĕме хăпарнă. [10] Çавăнта вăл хырăм
выççине туйса илнĕ, унăн çиес килсе кайнă. Апат
хатĕрленĕ вăхăтра вăл питĕ хавхаланса кайнă та
[11] сасартăк тӳпе яри уçăлнине курнă. Çав уçăлăхран
çĕр çине, ун пуçĕ тĕлнелле, тăватă кĕтессинчен
çыхнă сарлака пир евĕрлĕ темĕнле япала анса-анса
пынă. [12] Унăн ăшĕнче çĕр çинчи тĕрлĕрен тăватă
ураллă чĕр чун, тискер кайăк, çĕлен-калта, вĕçен
кайăк пулнă. [13] Унтан ăна çакнашкал сасă илтĕннĕ:
«Петр, тăр та çаксене пусса çи». [14] Анчах та Петр:
«Çук-çук, Турăçăм! Ирсĕррине, таса маррине эпĕ
нихăçан та нимĕн те çимен», – тенĕ. [15] Вара сасă
татах тепĕр хут илтĕннĕ: «Турă тасатнине эсĕ таса
мара ан хур». [16] Çапла виçĕ хутчен пулнă, унтан çав
япала каллех тӳпене çĕкленнĕ.
[17] Кунашкал курăну мĕне пĕлтерет-ши тесе
аптăраса, Петр шухăша путнă. Шăп çав вăхăтра
Корнилий янă хайхи çынсем, Симон çурчĕн тĕлне

ыйтса пĕлсе, хапхи умне пырса тăнă. 18 «Петр текен
Симон çакăнта-и?» – хыттăн ыйтнă вĕсем. 19 Петр
çаплах курăну пирки шухăшласа тăнă. Çав хушăра
Сывлăш ăна каланă: «Симон, сана виççĕн шыраççĕ,
20 тăр та вĕсем патне ан. Вĕсемпе пĕрле ним
иккĕленмесĕрех кай, мĕншĕн тесен вĕсене Эпĕ
ятăм». 21 «Эсир шыраканни эпĕ-ха вăл, – тенĕ ансан
Петр çав çынсене. – Эсир мĕн çăмăлпа килсеччĕ?»
22 Лешсем вара çапла каланă: «Ырă ĕçсем туса,
Турăран хăраса пурăнакан, пĕтĕм Иудея халăхĕ
сума сăвакан çĕрпĕве, Корнилие, святой ангел
курăннă. Çав ангел сана Корнилий патне чĕнсе
пыма, санăн сăмахна итлеме хушнă». 23 Вара Петр
вĕсене чĕнсе кĕртнĕ те хăна тунă.
Тепĕр кунне, тăрсанах, Петр çав çынсемпе кайнă.
Иоппири хăш-пĕр ĕненекен тăвансем те вĕсемпе
пĕрле кайнă.

### Петр Корнилий патĕнче

24 Кесарине вĕсем тепĕр куннех çитнĕ. Корнилий,
хăйĕн тăванĕ-хурăнташĕсене, çывăх тус-
юлташĕсене пуçтарса, вĕсене кĕтсе тăнă. 25 Петр
пырса кĕнĕ чухне Корнилий ăна хирĕç тухса кĕтсе
илнĕ, ури умне ӳксе пуççапнă. 26 Петр ăна тытса
тăратнă та çапла каланă: «Тăрах, тăр, эпĕ санашкал
çынах-иç». 27 Корнилийпе калаçкаласа вăл пӳрте
кĕнĕ, унта ĕнтĕ туллиех çын пухăннă. 28 «Пĕлетĕр
ĕнтĕ, – тенĕ вĕсене Петр, – пирĕн саккунпа иудейăн
ют халăх çыннипе хутшăнма та, унăн кил-çуртне
кĕме те юрамасть. Анчах та Турă мана пĕр çынна та
ирсĕре е таса мара хума юраманнине уçса пачĕ.
29 Çавăнпа та, чĕнсен, эпĕ пĕр сăмахсăрах килме
килĕшрĕм. Халĕ ĕнтĕ ыйтам-ха: мĕн çăмăлпа
чĕнтĕр эсир мана?» 30 Корнилий çапла каланă:
«Тăватăм кун çак вăхăталла эпĕ килте типĕ
тытаттăм. Кăнтăрла иртни виçĕ сехетсенче, кĕлтунă
чухне, сасартăк ман ума çап-çутă тумтирлĕ çын
пырса тăчĕ те 31 каларĕ: „Корнилий, Турă санăн
кĕллӳне илтрĕ, эсĕ чухăнсене пулăшнине асăрхарĕ.
32 Халĕ вара Петр текен Симона чĕнме Иоппине
çынсем яр. Вăл тир тăвакан Симон ятлă пĕр çын
патĕнче, тинĕс хĕрринчи çуртра, хăна пулса
пурăнать. Вăл килсе сана каласа парĕ“. 33 Эпĕ
çавăнтах сан патна çынсем ятăм. Эсĕ килни аван
пулчĕ. Турă сана мĕн хушнине йăлтах итлесчĕ тесе
эпир халĕ пурте Турă умĕнче тăратпăр». 34 Петр
çăвар уçса çапла каланă: «Турă çынна кам пулнине
кура хакламаннине эпĕ чăнахах куртăм. 35 Турă
сумлăхĕнчен хăракан, чăнлăхпа пурăнакан кирек
мĕнле халăх çыннине те Турă кăмăллать. 36 Турă
Израиль ывăлĕсене Иисус Христос урлă канăçлăх
çинчен Ырă Хыпар янă. Çав Иисус Христос –
пуриншĕн те Хуçамăр. 37 Иоанн шыва кĕме ӳкĕтлесе
вĕрентнĕренпе Галилейăран пуçласа пĕтĕм
Иудейăра мĕн-мĕн пулса иртнине эсир пĕлетĕр.
38 Турă Назаретри Иисуса суйласа илсе Святой
Сывлăш тата вăй-хăват пачĕ. Вăл пур çĕрте те ырă
ĕçсем туса, усал ернисене сыватса çӳрерĕ, мĕншĕн
тесен Турă Унпа пĕрле пулчĕ. 39 Эпир – Вăл Иудея
çĕрĕнче тата Иерусалимра мĕн-мĕн тунине курса
çирĕплетекенсем. Юлашкинчен иудейсем Ăна
йывăç хĕрес çине пăталаса вĕлерчĕç. 40 Турă Ăна
виççĕмĕш кунне чĕртсе тăратрĕ, çынсене
курăнмалла турĕ. 41 Анчах Вăл пур çынна та
курăнмарĕ, Иисус çинчен çирĕплетсе пĕлтерме
Турă малтанах суйласа илнĕ çынсене – пире анчах
курăнчĕ. Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăрсассăн эпир
Унпа пĕрле ĕçсе çирĕмĕр. 42 Иисус пире çынсене
вĕрентсе çӳреме хушрĕ. Чĕррисене те, вилнисене
те Турă хушнипе Суд тăваканĕ Хăй иккенне
çирĕплетсе пĕлтерме каларĕ. 43 Ăна ĕненекенсен
Унăн ячĕпе çылăхĕсем каçарăнассине мĕн пур
пророксем те çирĕплетсе каланă». 44 Петр çак
сăмахсене каласа тănă хушăрах вăл вĕрентнине
итлесе тăракан мĕн пур çын çине Святой Сывлăш
аннă. 45 Святой Сывлăш тивлечĕ урăх халăх
çыннисем çине те аннă. Çавна курсан Петрпа пĕрле
унта пынă ӳт кастарнă ĕненекенсем тĕлĕнсех
кайнă. 46 Мĕншĕн тесен лешсем унччен хăйсем
пĕлмен чĕлхесемпе Турра мухтанине вĕсем илтнĕ.
Вара Петр каланă: 47 «Хамăр пекех Святой Сывлăш
илнĕ çынсене шывпа тĕне кĕртме кам чарма
пултарĕ?» 48 Вăл вара вĕсене Иисус Христос ячĕпе
тĕне кĕме хушнă. Унтан кил хуçисем Петра хăйсем
патĕнче тата темиçе кунлăха юлма ыйтнă.

### Петр Иерусалимри ĕненекенсем патĕнче

11 Урăх халăх çыннисем те Турă сăмахне
йышăннине Иудейăри апостолсемпе
ĕненекен тăвансем илтнĕ. 2 Вара, Петр Иерусалима
пырсан, ӳт кастарнисем ăна ӳпкелеме тытăннă.
3 «Эсĕ ӳт кастарманнисемпе хутшăнтăн, вĕсемпе
пĕрле ĕçсе çирĕн», – тенĕ вĕсем. 4 Петр вĕсене мĕн
пулса иртнине йĕркипе ăнлантарса пама пуçланă:
5 «Эпĕ Иоппи хулинче кĕлтăваттăм. Çавăн чухне
тăнран кайнă пек пултăм. Сасартăк тӳперен тăватă
кĕтессинчен çыхнă сарлака пир евĕрлĕ темĕнле
япала аннине куртăм. Вăл ман тĕлех анчĕ. 6 Эпĕ ун
ăшне сăнарах пăхрăм та унта çĕр çинчи тăватă
уралла чĕр чунсем, тискер кайăксем, çĕлен-
калтасем, вĕçен кайăксем пуррине асăрхарăм.
7 Унтан мана „Петр, тăр та çаксене пусса çи“ текен
сасă илтĕнчĕ. 8 „Çук-çук, Турăçăм! – терĕм вара эпĕ.
– Ирсĕррине, таса маррине эпĕ нихăçан та нимĕн
те çимен“. 9 „Турă тасатнине эсĕ таса мара ан хур“, –
терĕ вара мана сасă тепĕр хут. 10 Виçĕ хут çапла
пулчĕ, унтан каллех пĕтĕмпе пĕлĕте çĕкленсе
кайрĕ. 11 Шăп çав самантра эпĕ пурăнакан çурт
умне Кесарирен ман патăма янă виçĕ çын пырса та
тăнă. 12 Сывлăш мана пĕр иккĕленмесĕрех вĕсемпе
пĕрле кайма хушрĕ. Çак ĕненекен ултă тăванăм та
манпа пĕрле пулчĕç, эпир вара хама чĕннĕ çын
килне кайрăмăр. 13 Вăл пире хăй килĕнчех святой
ангела курни çинчен каласа кăтартрĕ. Курăнсассăн
ангел çапла каланă пулнă: „Петр текен Симона
чĕнме Иоппине çынсем яр. 14 Вăл сана сăмахсем

калĕ, çав сăмахсемпе ху та, пĕтĕм кил-йышу та
çăлăнĕ“. [15] Кайран, эпĕ калаçа пуçласан, маларах
хамăр çине аннă пекех, вĕсем çине те Святой
Сывлăш анчĕ. [16] Çавăн чухне эпĕ Хуçамăр сăмахне
аса илтĕм. „Иоанн шывпа тĕне кĕртнĕ, сире вара
Святой Сывлăшпа тĕне кĕртĕç“, – тенĕччĕ Вăл.
[17] Çапла ĕнтĕ пире, Иисус Христос Хуçамăра
ĕненекенсене, панă тивлетех Турă вĕсене те парать
пулсан, Турра чăрмав тума камах вара эпĕ?»
[18] Çакна итлесе пĕтерсен вĕсем лăпланнă. «Чĕрĕлĕх
илмешкĕн Турă урăх халăхсене те ӳкĕнмелле тунă
курăнать», – тенĕ вара вĕсем Турра мухтаса.

### Антиохири чиркӳ

[19] Стефана вĕлернĕ вăхăтранпах хĕсĕрленĕ пирки
тарса-саланса кайнă ĕненекенсем Финики таранах,
Кипрпа Антиохи таранах çитнĕ. Вĕсем Турă сăмахне
иудейсемсĕр пуçне урăх никама та вĕрентмен.
[20] Вĕсенчен хăшĕ-пĕри Кипрпа Киринея çыннисем
пулнă. Антиохине пырсан çавсем Иисус Хуçамăрăн
Ырă Хыпарне грексене те каласа кăтартнă. [21] Хуçа
Турă вĕсене хăват парса тăнăран питĕ нумай çын,
ĕненме пуçласа, Турă енне çаврăннă. [22] Çакăн
çинчен Иерусалимри ĕненекен ушкăна та хыпар
çитнĕ. Вара ĕненекенсем Варнавăна Антиохине
кайма хушнă. [23] Турă тивлетне хăй куçĕпе хăй çитсе
курсан вăл питĕ хĕпĕртенĕ. Вара Варнава пурне те
тӳрĕ кăмăлпа Хуçамăра пăхăнса тăма ӳкĕтленĕ.
[24] Мĕншĕн тесен вăл ырă кăмăллă çын пулнă. Унăн
чун-чĕри Святой Сывлăшпа тата ĕненӳпе тулнă
пулнă. Варнавăна пула чылай халăх Хуçамăр енне
çаврăннă. [25] Каярахпа Варнава Савла шырама Тарс
хулине кайнă, шыраса тупсан ăна Антиохине илсе
пынă. [26] Вара вĕсем çулталăкĕпех Антиохири
ĕненекен ушкăнра нумай-нумай çынна Турă
сăмахне вĕрентнĕ. Антиохири вĕренекенсене чи
малтан христиансем тесе калама пуçланă. [27] Çав
кунсенче Антиохине Иерусалимран пророксем
пынă. [28] Вара вĕсенчен пĕри, Агав ятли, тăнă та,
Святой Сывлăш пĕлтернипе, пĕтĕм тĕнчипех питĕ
йывăр выçлăх пуласси çинчен малтанах каласа
хунă. Кайран, Клавдий император вăхăтĕнче, çав
выçлăх чăнах та пулнă. [29] Вара вĕренекенсем,
харпăр хăй вăй çитернĕ таран, Иудейăри
ĕненекенсем патне пулăшу яма шут тытнă.
[30] Шутланă та тунă. Мĕн пуçтарнине вĕсем
Варнавăпа Савлран Иерусалимри пресвитерсене
парса янă.

### Петра тĕрмене хупни тата ăна ангел ирĕке кăларни

12 Ĕненекен ушкăнрисене усал тăвас тесе Ирод
патша çав вăхăталла хăшне-пĕрне тĕрмене
хуптарнă, [2] Иоанн пĕртăванне Иакова вара хĕçпе
касса вĕлерттернĕ. [3] Çакна иудейсем кăмăлласах
йышăннине курсан вăл тепĕртакран Петра та
тыттарнă. Ун чухне тутлăлла çăкăр уявĕн кунĕсем
пулнă. [4] Пасха иртсен Петра халăх умне илсе тухас
тесе, Ирод ăна тытса тĕрмене хуптарнă, тăватшар
салтакăн тăватă ушкăн хурал тăратса ăна сыхлама
хушнă. [5] Çапла вара Петра тĕрмере хуралласа
усранă. Çав вăхăтра ĕненекен ушкăнрисем уншăн
питĕ тăрăшса Турра кĕлтунă. [6] Ирод Петра халăх
умне илсе тухас тенĕ чух, çĕрле, икĕ сăнчăрпа
тимĕрленĕ Петр икĕ салтак хушшинче çывăрнă.
Тĕрме алăкĕсем умĕнче хуралçăсем сыхласа тăнă.
[7] Сасартăк Хуçа Туррăмăрăн ангелĕ курăннă та,
тĕрмене çутă çутатса янă. Ангел Петра аяккинчен
тĕртсе вăратнă та: «Тăр хăвăртрах», – тенĕ.
Çавăнтах Петр аллинчи сăнчăрсем хывăнса ӳкнĕ.
[8] «Пилĕкне çых, уруна тăхăн», – тенĕ ăна ангел.
Петр çапла тунă та. «Тумтирне тăхăн та ман хыççăн
пыр», – тенĕ унтан ангел ăна. [9] Петр тухнă та ангел
хыççăн утнă. Ангел мĕн туни чăн пулнине вăл
ăнланайман, куçа курăнать пулĕ тесе шухăшланă.
[10] Вĕсем малтанхи хуралпа иккĕмĕш хуралтан
иртнĕ, унтан хула çулĕ çинчи тимĕр хапха патне
çитнĕ. Умĕнчи хапха хăй тĕллĕнех уçăлса кайсан
вĕсем хапхаран кĕнĕ. Çапла пĕр урампа утса тухсан
ангел сасартăк куçран çухалнă. [11] Тăна кĕрсе çитсен
Петр хăй ăшĕнче шухăшланă: «Хуçамăр Хăйĕн
ангелне ярса мана Ирод аллинчен, иудейсем мĕн
кĕтнинчен пуринчен те хăтарчĕ. Тинех çакна чăн-
чăннипе ăнланса илтĕм». [12] Йĕри-тавра пăхса
çаврăнсан вăл Марк текен Иоанн амăшĕ Мария
пурăнакан пӳрт умне пынă. Ĕненекенсенчен
чылайăшĕ унта кĕлле пуçтарăннă пулнă. [13] Петр
хапхана шаккасан камне пĕлмешкĕн Рода ятлă
хĕрарăм тарçă тухнă. [14] Петра сасăран палласа
илсен савăннипе вăл хапхине уçма манса кайсах
чупса кĕнĕ те: «Хапха умĕнче Петр тăрать», – тенĕ.
[15] «Аташмастăн-и эсĕ?» – тенĕ лешсем. Хĕрарăм
хăйĕннех каланă. «Эппин ку унăн ангелĕ пулех», –
тенĕ вара пӳртрисем. [16] Петр çаплах хапхана
шакканă. Хапхине уçсан вара вĕсем ăна курнă та
тĕлĕнсех кайнă. [17] Унтан Петр, аллипе паллă
кăтартса, шăпланма ыйтнă, хăйне Хуçамăр
тĕрмерен епле кăларнине вĕсене каласа панă.
«Çакăн çинчен Иаковпа ытти ĕненекен тăвансене
те пĕлтерĕр-ха», – тесе ыйтнă вăл. Вара тухнă та
урăх çĕре кайнă.
[18] Тул çутăлсан, Петр ăçта кайса кĕнине пĕлмен
салтаксем йăлт аптăраса ӳкнĕ. [19] Ирод ăна
шыраттарнă, анчах тупайман. Вара, хуралçисене
айăпласа, вĕлерме хушнă.
Унтан Ирод Иудейăран Кесарине кайнă, пĕр хушă
çавăнтах пурăннă.

### Ирод вилĕмĕ

[20] Ирод Тирпа Сидон çыннисене питĕ çилленнĕ
пулнă. Кусем вара калаçса татăлнă та ун патне
пынă, патшан хăй патне çывхартнă Власт ятлă
тарçине хăйсен енне çаврса, патшаран килĕшӳ
ыйтнă. Мĕншĕн тесен вĕсен çĕрĕнчи халăх Ирод
патша çĕрĕнчи тырăпа тăранса пурăннă.
[21] Палăртнă кун, патша тумне тăхăнса, Ирод

престол çине ларнă та вĕсемпе калаçу пуçланă.
22 «Ку – этем сасси мар, Турă сасси!» – тесе кăшкăра
пуçланă халăх. 23 Анчах та çав самантрах Турра
мухтав сăмахĕ каламаншăн Ирода Хуçа Туррăмăрăн
ангелĕ вар-хырăм чирĕпе хутлатса лартнă. Унăн
ăш-чиккине хурт çисе янă, вăл вилнĕ.
24 Ĕнтĕ Турă сăмахĕ сарăлнăçемĕн сарăлсах пынă.
25 Хушнă ĕçĕсене пурнăçласан Варнавăпа Савл
Иерусалимран Антиохине тавăрăннă. Хăйсемпе
пĕрле вĕсем Марк текен Иоана та илнĕ.

### Святой Сывлăш Варнавăпа Савла чĕнсе илни

13 Антиохире, унти ĕненекен ушкăнра, хăшĕ-
хăшĕ пророксем, вĕрентекенсем пулнă:
Варнавăпа Нигер текен Симеон, Киринея çынни
Луций, Ирод пуçлăхпа пĕрле пăхса ӳстернĕ Манаил
тата Савл. 2 Пĕррехинче, вĕсем Хуçамăра кĕлтуса
типĕ тытнă вăхăтра, Святой Сывлăш çапла каланă:
«Эпĕ Варнавăпа Савла ятарлă ĕç валли чĕнсе илнĕ,
вĕсене çав ĕçĕме тума ярăр». 3 Вара ĕненекенсем
типĕ тытса кĕлтунă та, Варнавăпа Савл çине
аллисене хурса, вĕсене ăсатса янă.

### Апостолсем Кипрта вĕрентсе çӳрени

4 Святой Сывлăш янă çак икĕ апостол Селевкине
çитнĕ, унтан шывпа ишсе Кипра кайнă. 5 Саламина
пырса çитсен вĕсем Турă сăмахне иудейсен
синагогисенче ӳкĕтлесе вĕрентнĕ. Иоанн та
вĕсемпе пĕрле çӳренĕ, вĕсене пулăшнă. 6 Пĕтĕм
утравĕпех çӳресе тухсан вĕсем Паф хулине çитнĕ.
Унта вĕсем иудей çыннине, Вариисус ятлă
асамçăна, суя пророка тĕл пулнă. 7 Вариисус асамçă
Сергий Павел ятлă Рим лартнă пуçлăхпа, пит
ăслăскерпе, çывăх пулнă. Çав пуçлăх Варнавăпа
Савла чĕнтерсе пынă та Турă сăмахне итлесшĕн
пулнă. 8 Хăйне Елима текен Вариисус (Елима тени
асамçă тени пулать) Рим лартнă пуçлăх ĕненме
пуçласран шикленсе вĕсене хирĕç пынă. 9 Вара
Павел тесе те чĕнекен Савл, чун-чĕри Святой
Сывлăшпа тулнăскер, ăна куçранах çапла каланă:
10 «Эй, шуйттан ывăлĕ, кирек епле чăнлăх тăшманĕ!
Санăн чун-чĕрӳ тĕрлĕ ултавлăхпа, тĕрлĕ усаллăхпа
тулса ларнă. Çынсене эсĕ Хуçамăрăн тӳрĕ çулĕ
çинчен пăрса яма пăрахатăн-и, пăрахмастăн-и?
11 Халĕ акă Хуçа Турă алли сан тĕле çитрĕ. Эсĕ
суккăрланса ларăн, пĕр вăхăт хĕвеле те кураймăн».
Сасартăк Вариисуса тĕттĕмлĕх, сĕмлĕх хупласа
илнĕ. Вара вăл, унталла-кунталла çавăрăнкаласа,
хăйне çавăтмашкăн çын шыранă. 12 Мĕн пулса
иртнине курсан, Хуçамăр вĕрентĕвĕнчен тĕлĕнсе,
проконсул ĕненме пуçланă.

### Писидири Антиохире

13 Пафран ишсе кайсан Павелпа юлташĕсем
Памфилири Пергине çитнĕ. Иоанн вара вĕсенчен
уйăрăлса Иерусалима тавăрăннă. 14 Кусем Пергирен
тата малалла, Писидири Антиохине çитиччченех,
кайнă. Шăмат кун вĕсем синагогăна кĕрсе ларнă.
15 Саккун кĕнекипе пророксен кĕнекине вуланă
хыççăн синагога пуçлăхĕсем вĕсене çын урлă çапла
пĕлтернĕ: «Тăван çыннăмăрсем! Сирĕн халăха
вĕрентсе калас сăмахăр пур пулсан, калăр!»
16 Павел ура çине тăнă та, аллипе паллă парса,
çапла каланă: «Эй, Израиль çыннисем, эй, Турăран
хăракансем, итлĕр! 17 Çак халăхăн Турри пирĕн мăн
асаттемĕрсене суйласа илнĕ. Египет çĕрĕнче
пурăннă чухне Турă çак халăха асла кăларнă, Хăйĕн
хăватлă аллипе вĕсене унтан ертсе тухнă. 18 Хĕрĕх
çула яхăн вĕсене пуш хирте тăрантарса усранă.
19 Унтан вара, Ханаан çĕрĕнчи çичĕ тĕрлĕ халăха
пĕтерсе, вĕсен çĕрне Хăй халăхне еткерлĕхе уйăрса
панă. 20 Самуил пророк таранччченех Турă вĕсене
тӳресем парса тăнă, çапла тăватă çĕр аллă çул
иртнĕ. 21 Унтан вĕсем хăйсем валли патша ыйтнă.
Турă вĕсене Вениамин йăхĕнчи Кис ывăлне Саула
панă. Саул хĕрĕх çул патшара ларнă. 22 Кайран,
Саула патшаран кăларса, Турă Давида патшана
лартнă. Давид çинчен Вăл çапла çирĕплетсе
пĕлтернĕ: „Эпĕ Хамăн кăмăлăма каякан çынна,
Иессей ывăлне Давида тупрăм. Эпĕ палăртса
хунисене вăл пурнăçлĕ“. 23 Хăйĕн сăмахне тытса,
Турă Давид йăхĕнченех Израиль валли Çăлакан
Иисуса кăларнă. 24 Иисус килес умĕн Иоанн пĕтĕм
Израиль халăхне çылăхран ӳкĕнсе шыва кĕме
ӳкĕтлесе вĕрентнĕ. 25 Хăйне пӳрнĕ ĕçе вĕçлесе вăл
çапла каланă: „Эсир мана кам вырăнне хуратăр?
Эсир Кĕтни эпĕ мар. Анчах та акă манăн хыççăн
Килекенĕ пулĕ, эпĕ Унăн пушмакне хывма та
тивĕçлĕ мар“. 26 Эй тăван çыннăмăрсем! Авраам
йăхĕн ачисем! Эй, Турăран хăракан сирĕн
хушшăрти ытти халăх çыннисем! Çак çăлăнăç
сăмахне сирĕн валли янă. 27 Мĕншĕн тесен
Иерусалимра пурăнакансемпе вĕсен пуçлăхĕсем
Иисуса пĕлеймерĕç, Ăна айăпларĕç. Çапла майпа
синагогăсенче кашни шăмат кун вулакан
пророксен сăмахĕсем пурнăçланчĕç. 28 Вĕлерме
тивĕçлĕ нимĕнле айăп тупаймарĕç пулин те, вĕсем
Пилатран Ăна вĕлерме ыйтрĕç. 29 Кайран вара,
Çырнинче Ун çинчен каланине пĕтĕмпех
пурнăçласан, Ăна хĕрес çинчен антарса тупăклăха
хучĕç. 30 Анчах Турă Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратрĕ.
31 Хăйпе пĕрле Галилейăран Иерусалима пынă
çынсене Вăл чылай кун хушши курăннă. Халăха Ун
çинчен çирĕплетсе пĕлтерекенсем халĕ ĕнтĕ
çавсем. 32 Эпир сире Ырă Хыпар пĕлтеретпĕр.
Иисуса вилĕмрен чĕртсе тăратса Турă мăн
асаттемĕрсене шантарнине пире, вĕсен ачисене,
пачĕ. Иккĕмĕш псаломра каланă пекех пулса тухрĕ.
Унта çапла çырнă: „Эсĕ – Манăн Ывăлăм, паянтан
Эпĕ Санăн Аçу пулатăп“. 34 Ăна вилĕмрен чĕртсе
тăратса çĕрте çĕрме памасси пирки те Турă çапла
каланă: „Чăнах, Давида пама пулнă ырăлăхăмсене
Эпĕ сире паратăп“. 35 Тепĕр тĕлте çапла çырни те
пур: „Хăвăн таса Çыннуна çĕрте çĕрме памăн“.
36 Хăйĕн ĕмĕрне Турă ирĕкне пурнăçласа ирттернĕ

Давид, вилсен, ашшĕсем патнех масар çине кайнă,
çĕрнĕ, 37 анчах та Турă чĕртсе Тăратни çĕрмен.
38 Çапла ĕнтĕ, тăван çыннăмăрсем, çакна пĕлсе
тăрăр: çылăх каçарăнасси çинчен эпир сире
Христос ячĕпе пĕлтеретпĕр. 39 Мĕнле айăпшăн
Моисей саккунĕпе тӳрре тухаймарăр, кашни
ĕненекен çавсемшĕн пуриншĕн те Иисус урлă
тӳрре тухаять. 40 Хăвăрпа пророксем каланă пек
пуласран сыхланăр. Вĕсем çапла асăрхаттарнă:
41 „Эй, йĕрĕнсе кăна пăхакансем! Курса тĕлĕнĕр те
çухалăр! Ĕçĕме Эпĕ сирĕн ĕмĕртех тăватăп. Çав ĕç
çинчен сире кам та пулин каласа кăтартас пулсан,
эсир ăна ĕненмĕттĕр те“».
42 Павелпа Варнава иудейсен синагогинчен тухнă
чухне ытти халăх çыннисем вĕсенчен тепĕр шăмат
кун та çавăн çинченех каласа пама ыйтнă.
43 Пухăннă çынсем саланнă пулин те, иудейсем тата
Турра хисеплекен, тĕне кĕнĕ урăх халăх çыннисем
Павелпа Варнава хыççăн кайнă. Павелпа Варнава
вĕсемпе калаçнă, вĕсене Турă тивлечĕпе пурăнма
ӳкĕтленĕ. 44 Тепĕр шăмат кун вара пĕтĕм хули тенĕ
пекех Турă сăмахне итлеме пуçтарăннă. 45 Анчах та
иудейсем, халăх йышлăн пуçтарăннине курсан,
питĕ вĕчĕрхеннĕ. Вара вĕсем Павела хирĕç каласа,
усал сăмахпа хăртса, ун сăмахне пӳлсе пынă.
46 Павелпа Варнава вĕсене хăюллăнах çапла
каланă: «Турă сăмахне чи малтан сире
вĕрентмеллеччĕ. Анчах та эсир çав сăмаха
йышăнмасăр хăвăра хăвăр ĕмĕрлĕх пурăнăçа
юрăхсăр тăватăр. Çавăнпа та, акă, эпир урăх
халăхсене вĕрентетпĕр. 47 Мĕншĕн тесен Хуçамăр
пире çапла хушса каланă: „Санăн урлă тĕнче
хĕррине çитиех çăлăнăç килтĕр тесе, Эпĕ Сана ытти
халăхсен çути турăм“». 48 Çакна илтсен ытти халăх
çыннисем савăнса Хуçа Турă сăмахне мухтанă.
Ĕмĕрлĕх пурăнăçа кĕмешкĕн малтанах пӳрнисем
пурте ĕненме пуçланă. 49 Çапла Хуçамăрăн сăмахĕ
пĕтĕм çĕр-шывĕпех сарăлнă. 50 Анчах та иудейсем
хĕтĕртнипе тĕн-тĕшмĕшлĕ сумлă хĕрарăмсем тата
хулара пуç пулса тăракан çынсем Павелпа
Варнавăна хĕсĕрлеме пуçланă. Вара вĕсене хăйсен
çĕрĕнчен хăваласа янă. 51 Ури çумĕнчи тусанне
вĕсен еннелле силлесе хăварса, апостолсем
Иконие кайнă. 52 Вĕсен вĕренекенĕсен чун-чĕрисем
вара савăнăçпа, Святой Сывлăшпа тулнă.

## Иконире

14 Павелпа Варнава Иконире те иудейсен
синагогине кĕнĕ. Вĕсем çав тери хавхаланса
вĕрентнĕрен питĕ нумай иудейпа грек ĕненме
тытăннă. 2 Анчах та ĕненмен иудейсем урăх халăх
çыннисене вăрçтарса ярса ĕненекен тăвансене
хирĕç тăратнă. 3 Апла пулин те Павелпа Варнава
унта Хуçамăр çинчен хăюллăн вĕрентсе пайтах
пурăннă. Апостолсем Хăйĕн тивлечĕпе вĕрентнине
çирĕплетсе, Хуçамăр вĕсен аллипе хăватсемпе
паллăсем пултарнă. 4 Çав хушăра хула халăхĕ икке
пайланса кайнă: пĕрисем – иудейсем майлă,
теприсем апостолсем майлă пулнă. 5 Урăх халăх
çыннисемпе иудейсем, хăйсен пуçлăхĕсемпе пĕрле,
Павелпа Варнавăна мăшкăл туса, чулпа пере-пере
вĕлерме шухăш тытнă. 6 Çавна пĕлсен апостолсем
Ликаони тăрăхĕнчи Листрăпа Дерви ятлă хуласене,
вĕсен таврашĕнчи çĕрсене тухса кайнă. 7 Вĕсем
унта та Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳренĕ.

## Листрăпа Дервире

8 Листрăра пĕр утайман çын пурăннă. Çуралассах
çавăн пек çуралнăскер, вăл нихçан та утса курман,
яланах ларнă. 9 Павел вĕрентнине вăл та итленĕ.
Çавăн чухне Павел ун çине пăхнă та уксах-чăлахăн
сывалмалăх ĕненĕвĕ пуррине асăрханă. 10 «Иисус
Христос Хуçамăр ячĕпе калатăп сана, – тенĕ вăл
хыттăн, – тӳрлен те уру çине тăр!» Лешĕ çавăнтах
тӳрленсе сиксе тăнă та утма пуçланă. 11 Павел мĕн
тунине курнă халăх ликаон чĕлхипе кăшкăра
пуçланă: «Пирĕн пата этем евĕрлĕ пулса турăсем
анчĕç!» 12 Вĕсем Варнавăна Зевс тенĕ. Сăмах ăсти
пулнăран Павела Гермес тенĕ . 13 Хула çумĕнчех
Зевс кĕлеткине чӳклемелли вырăн пулнă. Чӳк пуçĕ
хула хапхи патне вăкăрсем çавăтса, чечек çыххисем
çĕклесе пынă – вăл халăхпа пĕрле чӳк тăвасшăн
пулнă. 14 Анчах та Варнавăпа Павел апостолсем,
хăйсен ячĕпе чӳк тăвасси çинчен илтсен,
тарăхнипе çийĕнчи тумтирĕсене çурса ярса, халăх
хушшине пырса кĕнĕ те çапла кăшкăрнă: 15 «Эй,
халăх! Мĕн хăтланатăр эсир? Эпир сирнешкел
çынсемех! Эпир сире çак суя турăсене ан пуççапчăр
тесе, чĕрĕ Турă енне çавăрăнччăр тесе
вĕрентетпĕр. Чĕрĕ Турă тӳпене те, çĕре те, тинĕсе
те тата вĕсенче мĕн пуррине те пултарнă. 16 Ĕлĕк-
авал Турă кашни халăха харпăр хăй çулĕпе çӳреме
ирĕк панă. 17 Çапах та Вăл ырă ĕçĕсемпе пире Хăй
çинчен астутарсах тăнă: çумăр çутарнă, тырă-
пулăллă çулсем янă, апат-çимĕç панă, чуна
савăнтарнă». 18 Çапла каласа вĕсем халăха аран-
аран хăйсене чӳк парнисем кӳме чарнă, килĕсене
саланма хушнă. Хăйсем вара, унтах юлса, вĕрентсе
пурăннă . 19 Çавăн чухне Антиохипе Иконирен хăш-
пĕр иудейсем пынă. Апостолсем хăюллăн
вĕрентнине курсан, вĕсем халăха: «Кусем чăн
сăмах каламаççĕ, суяççĕ кăна!» – тесе вĕсенчен
пăрăнма ӳкĕте кĕртнĕ. Çапла каласа хĕтĕртсе янă
халăх Павела чулпа пере-пере пĕтернĕ. Унтан, чунĕ
тухрĕ пулмалла тесе, ăна хула тулашне кăларса
пăрахнă.
20 Анчах та, вĕренекенĕсем ун тавра пуçтарăнсан,
вăл ури çине тăнă, унтан хулана таврăннă. Тепĕр
кунне вара вĕсем Варнавăпа пĕрле Дервине тухса
кайнă.

## Сирири Антиохине таврăнни

21 Çав хулара Ырă Хыпар пĕлтерсе вĕсем хăйсем
тавра тата нумайрах вĕренекен пуçтарнă. Кайран
вĕсем Листрăпа Икони урлă, Антиохи урлă каялла

тавăрăннă. 22 Апостолсем вĕренекенĕсен кăмăлне
çирĕплетнĕ, ĕненӳпе пурăнма вĕрентсе ӳкĕтленĕ.
«Турă Патшалăхне кĕрес тесен пирĕн нумай асап
тӳсмелле», – тенĕ вĕсем. 23 Павелпа Варнава кашни
ĕненекен ушкăнрах алă хурса пресвитерсем уйăрса
лартнă. Вара апостолсем типĕ тытса кĕлтунă та
вĕсене хăйсем ĕненекен Хуçамăр аллине парса
хăварнă. 24 Кайран апостолсем Писиди урлă
Памфилине çитнĕ. 25 Пергире Хуçамăрăн сăмахне
вĕрентсе çӳренĕ хыççăн вĕсем Атталине аннă.
26 Атталирен апостолсем шывпа ишсе каялла
Антиохине тавăрăннă. Шăпах çакăнта вĕсене Турă
тивлечĕпе ĕç шанса панă пулнă, çав ĕçе ĕнтĕ вĕсем
пурнăçланă. 27 Антиохине тавăрăнсан апостолсем
ĕненекен ушкăна пухнă та Турă хăйсем урлă мĕн-
мĕн тунине, Вăл урăх халăхсемшĕн те ĕненӳ алăкне
епле уçса панине пĕтĕмпех каласа кăтартнă.
28 Вĕренекенĕсемпе пĕрле вĕсем унта чылай вăхăт
пурăннă.

## Иерусалимри пуху

15 Темле çынсем, Иудейăран пынăскерсем,
ĕненекен тăвансене çапла вĕрентнĕ:
«Моисей йăлипе ӳт кастармасан çăлăнаймастăр».
2 Павелпа Варнава çапла вĕрентнипе килĕшмен,
çав çынсемпе тавлашсах кайнă. Вара çапла
йышăннă: кун пирки тĕплĕнрех ыйтса пĕлме
Павелпа Варнавăна тата темиçе ĕненекене
Иерусалимри апостолсемпе пресвитерсем патне
ярас. 3 Çапла вара, ĕненекен ушкăнрисем ăсатса
ярсассăн, вĕсем Финикипе Самари тăрăх пынă.
Çула май вĕсем урăх халăхсем те тĕне кĕни çинчен
кала-кала кăтартнă. Çавна илтсен ĕненекенсем
питĕ савăннă. 4 Çапла вĕсем Иерусалима çитнĕ.
Унта вĕсене ĕненекен тăвансем, апостолсемпе
пресвитерсем хапăлласа йышăннă. Павелпа
Варнава вĕсене Турă хăйсем урлă мĕн-мĕн тунине,
урăх халăхсемшĕн те ĕненӳ алăкне епле уçса
панине йăлтах каласа пĕлтернĕ. 5 «Эппин халĕ урăх
халăх çыннисен те ӳт кастармалла, Моисей
саккунне тытса пыма вĕсене те хушмалла», – тенĕ
çавăн чухне, ура çине тăрса, Христоса ĕненекен
хăш-пĕр фарисейсем. 6 Вара çак ыйтăва сӳтсе явма
апостолсемпе пресвитерсем пухăннă. 7 Чылай хушă
сӳтсе явнă хыççăн Петр тăнă та çапла каланă:
«Тăван çыннăмăрсем! Урăх халăхсем Ырă Хыпара
ман çăвартан илтсе ĕненччĕр тесе, Турă пирвайхи
кунсенченех хамăр хушăран мана суйласа илнине
пĕлетĕр. 8 Çын чĕрине витĕр курса тăракан Турă,
пире панă пекех урăх халăхсене те Святой Сывлăш
парса, вĕсене те йышăннине пĕлтерчĕ. 9 Вĕсен
чĕрисене ĕненӳпе тасатнăран пирĕнпе вĕсем
хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та юлмарĕ.
10 Мĕншĕн-ха эсир халĕ мăн асаттесем те, хамăр та
йăтайман çĕклеме вĕренекенсен ĕнси çине
хурасшăн пулса Туррăн чăтăмлăхне тĕрĕслетĕр?
11 Эпир те, вĕсем пекех, Иисус Христос Хуçамăр
тивлечĕпе çăлăнасса ĕненетпĕр». 12 Вара пĕтĕм
пуху шăпах пулнă. Пурте Павелпа Варнава мĕн
каланине итленĕ. Вĕсем Турă хăйсем урлă урăх
халăхсем хушшинче мĕнле-мĕнле паллăсемпе
хăватсем кăтартни çинчен каласа панă. 13 Вĕсем
хыççăн Иаков сăмах илнĕ. «Тăван çыннăмăрсем!
Итлесемĕрччĕ мана, – тенĕ вăл. 14 – Турă урăх халăх
çыннисене Хăй ячĕпе пухса Хăйĕн халăхĕ тума
малтанах кăмăл туни çинчен Симон пире
ăнлантарса пачĕ. 15 Пророксем çырнă сăмахсем те
вăл каланипе пĕр килеççĕ. Унта çапла çырнă:
16 „Кайран Эпĕ тавăрăнăп та Давидăн пăрахăçа
тухнă кĕлĕ чатăрне çĕнĕрен юсаса лартăп, ун
ăшĕнче мĕн аркатнине çĕнĕрен тăвăп. 17 Çакна Эпĕ
ытти çынсем тата мĕн пур халăхсем, Ман ятăм
вĕсем хушшинче сарăлсассăн, Хуçа Турра ăнтăлса
шыраччăр тесе тăвăп, тет çаксене пурне те тăвакан
Хуçа Турă“. 18 Турă Хăйĕн пур ĕçĕсене те ĕмĕртенпех
пĕлсе тăрать. 19 Çавăнпа та ĕнтĕ, ман шухăшăмпа,
Турă çулне шыракан урăх халăх çыннисене чăрмав
кӳмелле мар, 20 çапла çеç çырса ямалла: чӳклесе
ирсĕрлетнĕ апат-çимĕç ан çиччĕр, ан
аскăнланччăр, апат-çимĕçе пăвса вĕлернĕ выльăх-
чĕрлĕх ашĕнчен, юнран ан хатĕрлеччĕр,
хăйсемшĕн тутарасшăн маррине çынна та ан
туччăр. 21 Моисей саккунне вĕрентекенсем мĕн
авалтан кашни хуларах пур, синагогăсенче ăна
шăмат кунсерен вуласа пăраççĕ».

## Ĕненекен урăх халăх çыннисем патне янă çыру

22 Вара апостолсемпе пресвитерсем мĕн пур
ĕненекен ушкăнпа пĕрле çапла канаш тунă: хамăр
хушăран темиçе çын суйласа илес те вĕсене
Павелпа тата Варнавăпа пĕрле Антиохине ярас.
Вĕсем ĕненекен тăвансем хушшинче ят-сум илнĕ
Варсава текен Иудăна тата Силăна суйласа илнĕ.
23 Вĕсенчен çакнашкал çыру çырса парса янă:
«Антиохипе Сирири тата Киликири урăх халăхсем
хушшинчен тухнă ĕненекен тăвансене –
апостолсемпе пресвитерсенчен тата ĕненекен
тăванăрсенчен. Салам пултăр! 24 Эпир хамăр
патăмăртан тухса кайнă хăш-пĕр çынсем сире тем
те пĕр каласа пăтраштарса янă текен сăмаха
илтрĕмĕр. Вĕсем ӳт кастармалла, Моисей
саккунĕпе пурăнмалла тесе сире иккĕлентерсе янă
имĕш. Эпир вĕсене унашкал калама хушса
яманччĕ. 25 Çавăнпа эпир пухăнса канашларăмăр
та, темиçе çынна суйласа илсе, вĕсене хисеплĕ
Варнавăпа тата Павелпа пĕрле сирĕн патăра яма
калаçса татăлтăмăр. 26 Варнавăпа Павел – хамăрăн
Иисус Христос Хуçамăр ячĕшĕн хăйсен чунне парса
ĕçлекен çынсем. 27 Тата эпир Иудăпа Силăна
ятăмăр, вĕсем сире çырура каланинех сăмахпа
каласа та ăнлантарĕç. 28 Мĕншĕн тесен Святой
Сывлăш та, эпир те сирĕн çине ытлашши çĕклем
хурас мар терĕмĕр. Сирĕн çаксене, чи кирлисене
кăна, тытса пурăнмалла: 29 чӳклесе панă апат-çимĕç
çимелле мар, апат-çимĕçе юнран, пăвса вĕлернĕ
выльăх-чĕрлĕх ашĕнчен хатĕрлемелле мар,

аскăнланмалла мар, хăвăршăн тутарасшăн
маррине çынна та тумалла мар . Çаксене тытса
пырсан, аван тăватăр. Сывă пулăр».
30 Çапла вара, янă çынсем Антиохине çитнĕ те,
халăха пухса, çырăва вĕсене панă. 31 Лешсем вуласа
пăхнă та çапла вĕрентсе çырнăшăн питĕ хĕпĕртенĕ.
32 Иудăпа Сила вара, хăйсем те пророк пулнă май,
ĕненекен тăвансене тата нумай каласа вĕрентнĕ,
вĕсен ĕненĕвне çирĕплетнĕ. 33 Унта пĕр вăхăт
пурăнсан, ĕненекен тăвансем вĕсене канăçлăх
сунса апостолсем патне янă. 34 Анчах та Сила
çавăнтах юлма шухăш тытнă. Иуда вара
Иерусалима тавăрăннă. 35 Павелпа Варнава
Антиохирех юлнă. Унта вĕсем ытти нумай
юлташĕсемпе пĕрле Хуçамăрăн сăмахне вĕрентсе,
пĕлтерсе пурăннă.

### Павелпа Варнава хирĕçсе кайни

36 Нумаях та вăхăт иртмен, Павел Варнавăна
çапла каланă: «Атя каллех çула тухар, Хуçамăрăн
сăмахне хамăр вĕрентсе çӳренĕ мĕн пур хуласенчи
тăванăмăрсем епле пурăннине çитсе курар».
37 Варнава хăйсемпе пĕрле Марк текен Иоана та
илесшĕн пулнă. 38 Анчах та Павел унпа килĕшмен,
мĕншĕн тесен пĕррехинче Памфилире хăйсене
хушса янă ĕçе вĕçне çитермесĕрех Марк вĕсене
пăрахса кайнă пулнă. 39 Çавăн пирки вĕсем хирĕçсе
каймаллах тавлашнă. Çапла вĕсем пĕр-пĕринчен
уйăрăлнă. Варнава вара Марка хăйпе пĕрле илнĕ
те, шывпа ишсе, Кипра кайнă. 40 Павел хăйне
юлташа Силăна суйласа илнĕ те çула тухнă.
Ĕненекен тăвансем ăна Турă тивлечĕ çине шанса
ăсатса янă. 41 Вăл вара, ĕненекен ушкăнсене
тĕреклетсе, Сирипе Килики тăрăхĕнче çӳренĕ.

### Павелпа Сила хăйсемпе пĕрле Тимофея илни

16 Павел Дервине те, Листрăна та çитнĕ.
Çавăнта Тимофей ятлă пĕр вĕренекен
пурăннă. Амăшĕ унăн Христоса ĕненекен иудей
хĕрарăмĕ, ашшĕ грек пулнă. 2 Тимофей шанчăклă
çын пулнине Листрăпа Иконири тăвансем
çирĕплетсех каланă. 3 Павел ăна хăйпе пĕрле илме
кăмăл тунă. Çав тăрăхри иудейсем Тимофей ашшĕ
грек пулнине пурте пĕлсе тăнăран, иудейсене юрас
тесе, вăл Тимофея хăй патне илсессĕнех унăн ӳтне
кастарнă. 4 Вара, хуларан хулана çӳресе, вĕсем
ĕненекенсене апостолсемпе пресвитерсем
Иерусалимри пухура йышăннă йĕркесене тытса
пурăнма вĕрентнĕ. 5 Çапла чиркĕве çӳрекенсен
ĕненĕвĕ çирĕпленсех пынă, ĕненекенсен йышĕ
куллен ӳснĕçемĕн ӳснĕ.

### Павела Македони çынни курăнни

6 Святой Сывлăш хăйсене Асире Турă сăмахне
вĕрентме чарнă пирки вĕсем Фригипе Галати
çĕрĕсем тăрăх çӳренĕ. 7 Мисине çитсессĕн вĕсем
Вифинине каясшăн пулнă, анчах Святой Сывлăш
вĕсене унта та вĕрентме яман. 8 Мисирен вĕсем
Троадăна аннă. 9 Çĕрле вара Павела çакнашкал
курăну пулнă. Ун умне пĕр Македони çынни пырса
тăнă та йăлăна-йăлăна: «Македонине пырса пире
пулăшсам», – тенĕ. 10 Çак курăну хыççăнах эпир
Македонине кайма шухăшларăмăр, Хуçамăр пире
унта Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳреме чĕнет пулĕ
терĕмĕр.

### Филиппы хулинчи Лидия тĕне кĕни

11 Çапла вара, шывпа ишсе, Троадăран тӳрех
Самофракине, тепĕр кунне Неаполе çитрĕмĕр.
12 Унтан эпир Филиппы ятлă хулана кайрăмăр.
Филиппы – Македони çĕрĕн çак пайĕнчи хули тата
Рим колонийĕ. Çав хулара эпир темиçе кун хушши
пурăнтăмăр. 13 Шăмат кун вара эпир хула
хапхинчен юхан шыв хĕррине тухрăмăр. Çавăнти
пĕр вырăна ĕненекенсем хăнăхнă йăлипе кĕлĕ
тума пухăнаççĕ. Эпир те лартăмăр та пухăннă
хĕрарăмсемпе калаçа пуçларăмăр. 14 Пирĕн
калаçăва Фиатир хулинчен пынă Лидия ятлă пĕр
хĕрарăм та итлесе ларчĕ. Турра питĕ хисеплекен
çав хĕрарăм хаклă йышши пир-авăр сутса пурăннă.
Павел сăмахĕсене ăнланса илме Хуçамăр унăн чун-
чĕрине уçрĕ. 15 Кайран вара, хăйне те, кил-йышне
те тĕне кĕртсен, Лидия пире çапла каласа
тархасларĕ: «Мана эсир Хуçамăра чунтан парăннă
çын вырăнне хуратăр пулсан ман патăмра
пурăнăр». Çапла вăл пире ӳкĕте кĕртрĕ-кĕртрех.

### Павелпа Силăна тытса хупни

16 Пĕррехинче пире, кĕлĕ тумалли вырăна кайнă
чухне, мĕн пулассине калаттаракан усал ернĕ пĕр
хĕрарăм тарçă тĕл пулчĕ. Çак хĕрарăм, мĕн
пулассине пĕлтерсе, хуçисене чылай тупăш кӳрсе
тăнă. 17 «Çак çынсем – Çӳлти Турă чурисем! Вĕсем
пире çăлăнăç çулĕ çинчен хыпарлаççĕ!» – тесе
кăшкăрса пычĕ çав хĕрарăм Павелпа пирĕн
хыçăмăртан. 18 Вăл чылай кун хушши çапла
хăтланчĕ. Вара Павел, тарăхса кайса, çавăрăнса
пăхрĕ те: «Иисус Христос ячĕпе эпĕ сана хĕрарăм
ăшĕнчен тухма хушатăп!» – терĕ усал сывлăша. Çав
самантрах усал сывлăш ун ăшĕнчен тухрĕ.
19 Хăйсен тупăш илес шанчăкĕ пĕтнине туйса илнĕ
хуçасем вара Павелпа Силăна тытрĕç те хула
варрине, пуçлăхсем патне, сĕтĕрсе кайрĕç. 20 Вара,
вĕсене хула пуçлăхĕсем патне илсе пырсан, çапла
каларĕç: «Çак çынсем, иудейсем, хула халăхне
пăтратса çӳреççĕ, 21 урăхла йăласем вĕрентеççĕ. Вăл
йăла-йĕркесене пирĕн, Рим çыннисен, йышăнма
та, тытса пыма та юрамасть». 22 Халăх та вĕсен
хутне кĕмерĕ, хирĕç пулчĕ. Вара Рим пуçлăхĕсем,
апостолсен тумтирĕсене сӳсе илсе, патакпа
çаптарма хушрĕç. 23 Чылай хĕненĕ хыççăн вĕсене
тĕрмене хупрĕç, хурала тĕрмене хытă сыхлама
хушса хăварчĕç. 24 Хушнине пурнăçласа, хурал

пуҫлăхӗ вӗсене тӗрмен шалти пӳлӗмне хупнă,
урисене йывăҫ тăлă тăхăнтартнă.
25 Ҫур ҫӗр тӗлнелле Павелпа Сила кӗлтунă, Турра
мухтаса юрланă, тӗрмере ларакан ытти ҫынсем
вӗсен кӗлли-юррине итленӗ. 26 Сасартăк тӗрме
никӗсӗ те хускалмалла питӗ вăйлăн ҫӗр чӗтренсе
кайнă. Ҫавăнтах мӗн пур алăк яри усăлнă, пурин
ҫинчи сăнчăрсем те татăлса ӳкнӗ. 27 Хуралҫă
вăраннă та тӗрме алăкӗсем яри усă пулнине
асăрханă. Вара хупнисем пурте тухса тарнă пулӗ
тесе хӗҫне ярса тытнă та хăйне хăй вӗлересшӗн
пулнă. 28 Анчах та Павел хыттăн кăшкăрса каланă:
«Хăвна ан пӗтерех! Эпир пурте кунтах!» 29 Хуралҫă,
ҫутатмалли пама хушса, тӗрмене чупса кӗнӗ те
хăранипе чӗтресе Павелпа Сила умне ҫӗре ӳкнӗ.
30 Унтан, вӗсене тӗрмерен ертсе тухсан, ҫапла
каланă: «Эй, хисеплӗ ҫыннăмсем! Ҫăлăнас тесен
манăн мӗн тумалла ӗнтӗ?» 31 «Иисус Христос
Хуҫамăра ӗнен, вара ху та, пӗтӗм кил-йышу та
ҫăлăнӗ», – тенӗ вӗсем. 32 Унтан ăна хăйне те, ун
килӗнчисене пурне те Хуҫамăр сăмахне ӳкӗтлесе
вӗрентнӗ. 33 Ҫав каҫах хуралҫă вӗсене илсе кайнă та
суранӗсене ҫуса тасатнă; вара тӳрех хăй те, пӗтӗм
кил-йышӗ те тӗне кӗнӗ. 34 Килне илсе пырсан
вӗсене апат ҫитернӗ, Турра ӗненме пуҫланăшăн
хăйӗн пӗтӗм кил-йышӗпе пӗрле савăнмаллипех
савăннă.
35 Тул ҫутăлсан хула пуҫлăхӗсем хăйсен
пулăшуҫисене Павелпа Силăна ирӗке кăларма
хушса тӗрмене янă. 36 Тӗрме хуралҫи ҫавна Павела
пӗлтернӗ: «Хула пуҫлăхӗсем сире кăларса яма
хушнă, ӗнтӗ тухăр та канăҫлăн кайăрах». 37 Анчах та
Павел вӗсене ҫапла каланă: «Пире, Рим
гражданӗсене, пӗтӗм халăх умӗнче судсăр-мӗнсӗр
патакпа ҫаптарчӗҫ, унтан тӗрмене хупрӗҫ. Халӗ
вара вăрттăн кăларса ярасшăн-и? Ҫук, хăйсем килсе
хăйсемех кăларса яччăр пире». 38 Хула пуҫлăхӗсен
пулăшуҫисем ҫак сăмахсене хăйсен пуҫлăхӗсене
кайса каласа панă. Вӗсем Рим гражданӗсем тенине
илтсен хайхисен сехри хăпнă. 39 Вара вӗсем пырса
каҫару ыйтнă; тӗрмерен илсе тухсан, вӗсене
хуларан кайма тархасланă. 40 Павелпа Сила вара
тӗрмерен тухсанах Лидия патне кайнă. Унта вӗсем
ӗненекен тăвансемпе курнăҫса калаҫнă, ӳкӗтлесе
вӗрентнӗ, унтан тин ҫула тухнă.

## Павелпа Сила Фессалоникăра

17 Амфипольпе Апполони урлă кайса,
апостолсем Фессалоникăна ҫитнӗ. Унта
иудейсен синагоги пулнă. 2 Хăнăхнă йăлипе Павел
синагогăна кӗнӗ. Вăл унта виҫӗ шăмат кун
вӗрентнӗ. Павел вӗсене Христосăн асапланмалла,
вилӗмрен чӗрӗлсе тăмалла пулни ҫинчен
Ҫырнинчи сăмахсемпе ӗнентермелле ăнлантарнă.
«Эпӗ сире Иисус ҫинчен ӳкӗтлесе вӗрентетӗп, Иисус
вăл шăпах Турă Суйласа илни пулать те ӗнтӗ», –
тенӗ вăл. 4 Иудейсенчен хăшӗ-пӗри ӗненме
пуҫланă, Турра хисеплекен нумай-нумай грек тата
ятлă-сумлă чылай хӗрарăм Павелпа Сила енне
ҫавăрăннă. 5 Ҫакна курсан, ӗненмен иудейсем питӗ
кӗвӗҫсе кайнă. Вӗсем, хула урамӗсенчи путсӗрсене
пухса, ушкăнӗпех хула халăхне пăлхатса ҫӳренӗ.
Унтан, Иасон ҫуртне йӗри-тавра хупăрласа илсе,
Павелпа Силăна хăйсен аллине пама хистесех
ыйтнă. 6 Анчах та вӗсем апостолсене тупайман.
Вара Иасонпа хăш-пӗр ӗненекенсене хула
пуҫлăхӗсем патне сӗтӗрсе кайнă. «Вӗсем пӗтӗм
тӗнчипех халăха пăтратса ҫӳреҫҫӗ, халӗ акă кунта
та ҫитнӗ! – кăшкăрашнă ушкăнрисем. 7 – Иасон вара
вӗсене хăй патне кӗртнӗ! Вӗсем пурте император
хушнине хирӗҫ пыраҫҫӗ, вӗсем урăххине, Иисуса,
патша тесе хисеплеҫҫӗ!» 8 Ҫапла вӗсем итлекен
халăха та, хула пуҫлăхӗсене те пăлхатса янă. 9 Анчах
та пуҫлăхсем Иасонпа ыттисенчен саклат укҫи илнӗ
те вӗсене ирӗке янă.

## Верире

10 Ӗненекен тăвансем вара ҫав каҫах Павелпа
Силăна Верине ăсатнă. Унта ҫитсен вӗсем иудейсен
синагогине кайнă. 11 Кунти халăх Фессалоника
ҫыннисенчен пархатарлăрах пулнă, Турă сăмахне
пӗтӗм кăмăлтан йышăннă. Кунсеренех вӗсем
апостолсем вӗрентнине Ҫырнинче каланипе
танлаштарса тӗрӗсленӗ. 12 Ҫапла вара иудейсенчен
нумайăшӗ ӗненме пуҫланă. Ӗненекенсем
хушшинче ятлă-сумлă грек хӗрарăмӗсемпе
арҫыннисем те чылай пулнă. 13 Анчах та
Фессалоникăри иудейсем Павел Верире те Турă
сăмахне вӗрентнине пӗлсессӗн унта та пынă,
халăха хӗтӗртме, пăлхатма пуҫланă. 14 Вара
ӗненекен тăвансем Павела тинӗс хӗрринелле
каякан ҫулпа ҫийӗнчех леҫсе янă. Силăпа Тимофей
ҫавăнтах юлнă. 15 Леҫсе яракансем Павела Афинăна
ҫитиччenех ăсатнă, унтан хăйсем каялла
тавăрăннă. Павел вӗсене: «Силăпа Тимофей
хăвăртрах ман патăма килччӗр», – тесе пӗлтерме
хушса янă.

## Павел Афинăра

16 Силăпа Тимофея Афинăра кӗтсе пурăннă чухне,
пуҫҫапмалли кӗлеткесем хулипех тăнине курса,
Павелăн чунӗ тăвăлсах ҫитнӗ. 17 Ҫапла вара, вăл
иудейсемпе тата Турра хисеплекен ытти ҫынсемпе
синагогăра калаҫнă. Тата Павел кунсеренех пасар
вырăнӗнче тӗл пулакансемпе те калаҫнă. 18 Хăш-
пӗр философсем – эпикурсемпе стоиксем – унпа
тавлашма пуҫланă. Вӗсем Павел Иисус ҫинчен,
вилӗмрен чӗрӗлсе тăрасси ҫинчен вӗрентнине
илтнӗ. «Ҫак пуш параппан мӗн каласшăн ара?» –
тенӗ пӗрисем. «Вăл темле ют турăсем ҫинчен
вӗрентет пулас», – тенӗ тата теприсем. 19 Вара
вӗсем Павела ареопаг пухăвне илсе пынă. «Пире те
каласа парсамччӗ, – тенӗ вӗсем, – эсӗ ӳкӗтлекен
ҫӗнӗ вӗрентӳ мӗнлерехскер? 20 Итлетпӗр те – эсӗ
темле тӗлӗнмелле япаласем ҫинчен калаҫатăн,

çавăнпа та ку мĕнле вĕрентӳ пулнине пĕлес
терĕмĕр». 21 Афины çыннисем тата хулари урăх çĕр-
шыв çыннисем мĕн те пулин çĕнни çинчен калаçса
е итлесе вăхăта ирттерме питĕ юратнă. 22 Павел
ареопаг пухăвĕ умне тухса тăнă та çапла каланă:
«Эй, Афины çыннисем! Сăнатăп та – эсир питĕ тĕн-
тĕшмĕшлĕ пулнине куратăп. 23 Мĕншĕн тесен сирĕн
сăвапла вырăнăрсене пăхса çӳренĕ чухне эпĕ пĕр
чӳк вырăнĕ асăрхарăм. Çавăнта „пĕлмен Турă
валли“ тесе çырса хунăччĕ. Эпĕ сире шăпах хăвăр
пĕлмесĕр пуççапакан Турă çинчен ӳкĕтлесе
вĕрентетĕп те. 24 Тĕнчене тата тĕнчере мĕн
пуррине пĕтĕмпех пултарнă Турă – çĕрпе пĕлĕт
Хуçи. Вăл этем аллипе лартнă кĕлĕ çурчĕсенче
пурăнмасть. 25 Этем аллипе туни нимĕн те Ăна
кирлĕ мар. Вăл Хăй пурне те пурăнăçпа чĕрĕлĕх
тата тем те пĕр парса тăрать. 26 Пĕтĕм çĕр пичĕ
çинче пурăнччăр тесе, Вăл пĕр этемрен пĕтĕм
этемлĕхе пултарнă. Çак çĕр çинче çынсем пурăнас
вăхăта тата вырăна Вăл малтанах палăртса хунă.
27 Çакна Вăл çынсем Хăйне шыраччăр, чун-чĕрепе
туйса Хăйне тупма ăнтăлччăр тесе тунă. Тĕрĕссипе
вара Турă пирĕнтен кашнинчен инçех те мар.
28 Мĕншĕн тесен эпир Вăл пуртан пурăнатпăр,
çӳретпĕр, хамăр та пур. Сирĕн хăш-пĕр сăвăçăрсем
калашле: „Эпир – Унăн йăхĕнчен“. 29 Çапла ĕнтĕ,
эпир хамăр Турă йăхĕнчен пулнине пĕлсе тăратпăр.
Эппин этем шутласа кăларнă, ылтăнран, кĕмĕлтен е
чултан ăсталаса тунă кĕлетке Турă евĕрлĕ тесе
шухăшлани тĕрĕс мар. 30 Çапла вара, эпир ĕлĕк ним
пĕлменнине манăçа хăварса, Турă халĕ пур
çынсене те, пур çĕрте те ӳкĕнме хушать. 31 Хăй
малтанах суйласа илнĕ Çын урлă пĕтĕм тĕнчене
тӳрĕ суд тумалли куна Турă палăртса хунă ĕнтĕ.
Çавна çынсене пурне те ĕнентерес тесе, Турă Ăна
вилĕмрен чĕртсе тăратнă».
32 Вилнисем чĕрĕлесси çинчен илтсен пухура
ларакансенчен хăшĕ-пĕрисем тăрăхласа кулма
пуçланă. «Эпир сана тепĕр чух та итлĕпĕр-ха», –
тенĕ теприсем. 33 Вара Павел пухуран тухса кайнă.
34 Çапах темиçе çын, Павел майлă пулса, ĕненме
пуçланă. Вĕсем хушшинче ареопаг пухăвĕнче
ларакан Дионисий, Дамарь ятлă хĕрарăм тата
ыттисем те пулнă.

## Павел Коринфра

18 Çавăн хыççăн Павел, Афинăран кайса,
Коринфа пынă. 2 Унта вăл Понт çĕрĕнче
çуралнă Акила ятлă пĕр иудейпа унăн арăмне
Прискиллăна шыраса тупнă та вĕсем патне кĕнĕ.
Вĕсем анчахрах Италирен куçса килнĕ пулнă,
мĕншĕн тесен Клавдий император иудейсене
пурне те Римран тухса кайма хушнă пулнă.
3 Павелпа Акила иккĕшĕ те пĕр ĕçпе ĕçленĕ: вĕсем
чатăр тăвакансем пулнă. Çавăнпа Павел вĕсем
патĕнчех юлнă та пĕрле ĕçлесе пурăннă. 4 Шăмат
кунсерен Павел синагогăра калаçнă, иудейсемпе
грексене ӳкĕтленĕ.
5 Хайхи Силăпа Тимофей Македонирен пырсан,
чун-чĕри хистенипе Павел иудейсене Иисус вăл
Турă Суйласа илни тесе çирĕплетсех пĕлтернĕ.
6 Анчах та иудейсем Павела хирĕçлесе тем тĕрлĕ
усал сăмах каласа пĕтернĕ. Вара Павел тумтирĕ
çинчи тусанне силле-силле çапла каланă: «Сирĕн
çылăхăр хăвăр пуçăр çинчех юлать. Эпĕ – таса.
Паянтан урăх халăх çыннисем патне каятăп». 7 Вара
вăл унтан пăрăнса утнă та Турра пит хисеплекен
пĕр Иуст ятлă çын патне кĕнĕ. Унăн çурчĕ
синагогăпа юнашарах пулнă. 8 Синагога пуçлăхĕ
Крисп тата унăн пĕтĕм кил-йышĕ Хуçамăра
ĕненекенскерсем пулнă. Павел сăмахĕсене итлесе
Коринф çыннисенчен нумайăшĕ ĕненме пуçланă,
тĕне кĕнĕ. 9 Пĕррехинче çĕрле Хуçамăр, Павела
курăнса, çапла каланă: «Ан хăра! Ӳкĕтле, вĕрентме
ан чарăн. 10 Эпĕ санпах пулăп, çавăнпа та сана
никам та усал тăваймĕ: ку хулара Манăн
çыннăмсем нумай». 11 Вара Павел çавăнта хула
халăхне Турă сăмахне вĕрентсе çулталăк çурă
пурăннă.
12 Ахаияра Рим лартнă Галлион пуçлăх хуçаланнă
чухне иудейсем пĕр каварлă пулса Павела ярса
тытнă та суд умне тăратнă. 13 «Çакскер çынсене
Турра хисеплеме Моисей саккунĕ хушнă пек
вĕрентмест», – тенĕ вĕсем. 14 Павел çăварне уçма
ĕлкĕричченех Галлион иудейсене çапла каланă:
«Иудейсем! Енчен те эсир хăвăра кӳрентерни
çинчен, йĕркене пăсни çинчен евитленĕ пулсан,
эпĕ сирĕн сăмахăра итленĕ пулăттăм. 15 Анчах та
кунта тĕрлĕ вĕрентӳсем пирки, ятсем пирки,
Моисей саккунĕ пирки тавлашу пырать. Çавăнпа та
ку ыйтусене хăвăрах татса парăр. Кунашкал ĕçре
ман судья пулас килмест». 16 Вара вĕсене суд
çуртĕнчен хăваласа кăларса янă. 17 Мĕн пур грексем
синагога пуçлăхне Сосфена ярса тытнă та суд çурчĕ
умĕнчех хĕне пуçланă. Галлион хушша-хуппа
кĕмен.

## Павел Антиохине тавăрăнни

18 Коринфра татах чылай хушă пурăннă хыççăн
Павел, ĕненекен тăванĕсемпе сывпуллашса, Сирие
ишсе кайнă. Прискиллăпа Акила та унпа пĕрлех
пынă. Турра панă сăмахне асра тытса Павел, Сирие
ишсе кайиччен, Кенхреире çӳçне кастарнă.
19 Çапла вĕсем Ефес хулине çитнĕ. Унта Павел,
Прискиллăпа Акилăран уйăрăлса, синагогăна кĕнĕ
те иудейсемпе калаçма пуçланă. 20 Иудейсем ăна
хăйсем патĕнче тата кăштах та пулин юлма
тархасланă, анчах та Павел килĕшмен. 21 Вара
вĕсемпе сывпуллашнă май вăл çапла каланă:
«Çывхарса килекен уява манăн Иерусалимрах кĕтсе
илмелле, Турра кирлĕ пулсан, эпĕ сирĕн патăра
тавăрăнăп-ха». Вара Ефесран караппа ишсе кайнă.
Акилăпа Прискилла Ефесрах юлнă . 22 Павел карап
çинчен Кесарире анса юлнă, унтан Иерусалима
пынă. Унта вăл ĕненекен ушкăнрисемпе курнăçса
калаçнă та Антиохине тухса кайнă.

23 Пĕр вăхăт унта пулнă хыççăн Павел каллех çула
тухнă. Вăл, вĕренекенсене пурне те хавхалантарса,
Галатипе Фриги çĕрĕсен пур кĕтесĕсенче те пулнă.

### Аполлос Ефесра вĕрентни

24 Александрияра çуралнă Аполлос ятлă пĕр иудей
Ефеса пынă. Вăл пит ăста калаçакан, Çырнине
тĕплĕ пĕлекен çын пулнă. 25 Пĕлессе Аполлос
Хуçамăрăн çул пуçламăшне кăна – Иоанн шыва
кĕртни таран çеç – пĕлнĕ. Çапах та вăл Хуçамăр
çинчен чунĕпе çунса, тĕрĕс вĕрентнĕ. 26 Вăл
синагогăра та пит хастар вĕрентме пуçланă. Вăл
вĕрентнине илтсен Акилăпа Прискилла ăна хăйсем
патне чĕннĕ те Хуçа Туррăмăрăн çулĕ çинчен
тĕплĕнрех ăнлантарса панă. 27 Аполлос Ахаияна
кайма шухăш тытнă. Çавна пĕлсен ĕненекен
тăвансем унти вĕренекенсем патне Аполлоса хапăл
тума ыйтса çыру янă. Вырăна çитсессĕн вăл Турă
тивлечĕпе ĕненекенсене нумай пулăшнă.
28 Мĕншĕн тесен Аполлос пĕтĕм халăх умĕнчех
иудейсемпе тавлашса çиеле тухнă: Çырнинче
каланисемпе усă курсах Иисус вăл Турă Суйласа
илни тесе ĕнентерме пултарнă.

### Павел Ефесра пулни

19 Аполлос Коринфра пурăннă вăхăтра Павел
сăртлă-туллă тăрăхсенче çул çӳренĕ. Унтан
вăл Ефеса çитнĕ те хăш-пĕр вĕренекенсемпе тĕл
пулнă. 2 «Ĕненме пуçласассăн эсир Святой Сывлăш
илтĕр-и?» – тенĕ вăл вĕренекенсене. «Эпир Святой
Сывлăш пур тенине те илтмен», – тавăрнă лешсем.
3 «Апла пулсан эсир мĕнле ĕненӳпе тĕне кĕнĕ-ха?» –
ыйтнă вара Павел. «Эпир Иоанн вĕрентнĕ пек
шыва кĕтĕмĕр», – хуравланă вĕсем. 4 «Иоанн
çылăхран ӳкĕнтерсе шыва кĕртнĕ. Вăл халăха хăй
хыççăн Килекене, Христос Иисуса ĕненме
ӳкĕтленĕ», – тенĕ вара Павел. 5 Çакна илтсен вĕсем
Иисус Хуçамăр ячĕпе тĕне кĕнĕ. 6 Павел вĕсем çине
аллине хурсан, вĕсем çине Святой Сывлăш аннă.
Вара вĕсем хăйсем малтан пĕлмен чĕлхесемпе тата
пророкла калаçа пуçланă. 7 Пурĕ вĕсем вун икĕ
çынна яхăн пулнă.
8 Павел пĕр хăрамасăрах синагогăра виçĕ уйăх
ӳкĕтлесе вĕрентнĕ. Вăл çынсене Турă Патшалăхĕ
çинчен питĕ ĕнентермелле кала-кала кăтартнă.
9 Анчах та хăшĕ-пĕрисем ĕненмен. Вĕсем
çиллисене ниçта шăнăçтараймасăр Хуçа
Туррăмăрăн çулне халăх умĕнчех хурла пуçланă.
Çавăнпа Павел вĕренекенĕсене хăйпе пĕрле илсе
унтан пăрахса кайнă, Тиранн ятлă çыннăн
училищинче вĕсене куллен ӳкĕтлесе вĕрентнĕ.
10 Çапла пĕр икĕ çул та иртнĕ. Çавăнпа Асире
пурăнакансем пурте – иудейсем те, грексем те –
Иисус Хуçамăр çинчен пĕлтернĕ ӳкĕте илтнĕ.

### Скева ывăлĕсем

11 Турă Павел урлă тĕлĕнмелле ĕçсем нумай тунă.
12 Чирлисене Павелăн ал шăллийĕпе е саппунĕпе
витсен, лешсем сывалнă. Вĕсен ăшĕнчи усал
сывлăшсем те туха-туха тарнă. 13 Ялтан яла çӳресе
усал сывлăш ернисене сыватакан иудейсен хăш-
пĕр тухатмăшĕсем те Иисус Хуçамăр ятне асăна
пуçланă: «Сире, усал сывлăшсене, Павел ӳкĕтлесе
вĕрентекен Иисус ячĕпе тухма хушатпăр!» – тесе
тухатнă вĕсем. 14 Иудейсен Скева ятлă аслă
священникĕн çичĕ ывăлĕ çапла хăтланса çӳренĕ.
15 Анчах та усал сывлăш вĕсене каланă: «Иисуса та
пĕлетĕп, Павела та пĕлетĕп, эсир вара кам
пулатăр?» 16 Унтан усал сывлăш ернĕ çын
тухатмăшсем çине çав тери вăйлăн сиксе ӳкнĕ те
вĕсене парăнтарнă. Вара вĕсем, хĕнесе
пĕтернĕскерсем, çав çуртран çарамасах тухса
тарнă. 17 Ефесра пурăнакан иудейсемпе грексем çак
ĕç çинчен пĕлсен хăраса ӳкнĕ. Çавăнтанпа пурте
Иисус Хуçамăр ятне хисеплеме пуçланă. 18 Вара
Хуçамăра ĕненекен нумай çын пыра-пыра хăйсен
ĕçĕсем пирки пĕр пытармасăр каласа кăтартнă.
19 Чылай тухатмăш-юмăç та, хăйсен ăрăм
кĕнекисене пĕр çĕре пухса, пĕтĕм халăх умĕнче
çунтарса янă. Унтан çунтарса янă кĕнекесен хакне
шутласа пăхнă, вĕсен хакĕ аллă пин кĕмĕл укçана
яхăн пулнă. 20 Çакнашкал хăватлăн сарăлса, вăй
илсе пынă Хуçамăр сăмахĕ.

### Ефесри пăлхав

21 Çак ĕçсем пулса иртнĕ хыççăн Павел
Македонипе Ахаия урлă Иерусалима кайма шут
тытнă. «Иерусалимран вара манăн Рима
каймалла», – тенĕ вăл. 22 Унтан вăл хăйĕн икĕ
пулăшаканне, Тимофейпа Ераста, Македонине янă,
хăй вара вăхăтлăха Асирех юлнă.
23 Çав вăхăтра Хуçамăрăн вĕрентĕвне хирĕç пысăк
пăлхав пуçланнă. 24 Димитрий ятлă пĕр кĕмĕл ăсти
пулнă. Çавскер грексен Артемида туррине
кĕлтумалли çуртăн пĕчĕк ĕлкине кĕмĕлтен туса
сутса пурăннă, çак ĕçпе ытти ăстасем те нумай
тупăш илнĕ. 25 Димитрий кĕмĕлçĕсене тата ытти
ăстасене пухнă та çапла каланă: «Тусăмсем! Эпир
тулăх пурăнасси çак ал ăсталăхĕнчен килнине
пурте пĕлетпĕр. 26 Акă халĕ хăвăрах курса-илтсе
тăратăр: Павел текенскер Ефес çыннисене кăна
мар, пĕтĕм Аси халăхне тенĕ пекех, этем аллипе
ăсталанă япаласем турă мар тесе, хăйĕн ĕненĕвĕ
енне çавăрчĕ. 27 Пирĕншĕн кунашкал вĕрентӳ питĕ
сиенлĕ. Хамăр ал ăсталăхĕ хисепрен тухни тем мар-
ха, аслă Артемида турра кĕлтумалли çурт та
пăрахăçа тухĕ. Пĕтĕм Аси, пĕтĕм тĕнче хисеплесе
пуççапакан Артемида туррăн чапĕ пĕтсе ларĕ».
28 Çакна илтсен ыттисем пурте питĕ çилленсе
кайнă. «Ефесри Артемида аслă!» – тесе кăшкăра
пуçланă вĕсем. 29 Часах пĕтĕм хула халăхĕ пăлханса

кайнă. Çынсем Павелпа пĕрле Македонирен пынă
Гаийпе Аристарха ярса тытнă. Вара пурте пĕр çын
пек пулса вĕсене театр кăтартмалли вырăна
сĕтĕрсе кайнă. 30 Павел халăх хушшине кĕресшĕн
пулнă, анчах та вĕренекенĕсем ăна чарнă. 31 Çавăн
пекех Павелпа туслă хăш-пĕр Аси пуçлăхĕсем те
ăна театр вырăнне пырса ан курăн тесе калама
çынсем янă. 32 Пухура ним йĕрки те пулман: пĕри
пĕр тĕрлĕ, тепри тепĕр тĕрлĕ кăшкăрашнă.
Пухăннисенчен чылайăшĕ вара хăйсем кунта
мĕншĕн пуçтарăннине те пĕлмен. 33 Иудейсем
сĕннипе халăх хушшинчен Александр ятлă çынна
чĕнсе кăларнă. Вăл, аллипе паллă кăтартса, халăха
шăпланма ыйтнă. 34 Анчах та вăл иудей пулнине
пĕлсессĕнех пурте пĕр харăс: «Ефесри Артемида
аслă!» – тесе кăшкăрса янă. Çапла вĕсем пĕр-икĕ
сехете яхăн кăшкăрашнă. 35 Унтан халăх умне йĕрке
куралçи тухнă та лăплантарса каланă: «Эй, Ефес
çыннисем! Ефес хули аслă Артемидăшăн тата
Диопетшăн епле тăрăшнине кам пĕлмест пулĕ?
36 Эппин, кун пирки тавлашмалли те çук пулсан,
сирĕн лăпланмалла, хыпкаланса ӳкмелле мар.
37 Эсир вара кунта çак çынсене вăйпах сĕтĕрсе
килтĕр. Вĕсем Артемидăн кĕлĕ çуртне те çаратман,
сирĕн туррăра та хурламан. 38 Енчен те
Димитрийпе ытти ăстасем кама та пулин явап
тыттарас теççĕ пулсан, пирĕн çав ĕçсене тума суд
та, Рим лартнă пуçлăхсем те пур: вĕсем пĕр-пĕрне
кунта мар, çавсем умĕнче айăплаччăр. 39 Сирĕн
тата мĕнле те пулин урăх ыйту таврашĕ пур пулсан,
ăна йĕркене пăхăнса пуçтарнă халăх пухăвĕнче
татса парĕç. 40 Паянхи ĕç-пуçшăн пире хамăра
пăлхав çĕкленĕ тесе айăплама пултарасран пирĕн
асăрханмалла. Халăх пухăннине тӳрре кăларма
пирĕн нимĕнле сăлтав та çук». Çакна каланă хыççăн
вăл вара пухăва салатнă.

### Павел Македонипе Грецире

20 Пăлхав чарăнсан Павел вĕренекенсене
чĕнсе илсе хавхалантарнă, ӳкĕтленĕ, вара
сывпуллашнă та Македонине тухса кайнă.
2 Македони витĕр тухнă чухне те вăл çул
тăршшĕпех, Грецие çитиччченех, Иисуса
ĕненекенсене пит нумай ӳкĕтлесе хавхалантарнă.
3 Грецире Павел виçĕ уйăх пурăннă. Ун хыççăн вăл
Сирие тинĕспе кайма шут тытнă, анчах та иудейсем
хăйне хирĕç кавар тунă пирки каялла Македони
урлах тавăрăнма шухăшланă. 4 Унпа пĕрле Аси
таранах Вери çынни Пирр Сосипатрĕ,
фессалоникăсем Аристархпа Секунд, Дерви çынни
Гаий, Тимофей тата асисем Тихикпа Трофим пынă.
5 Вĕсем маларах кайса пире Троадăра кĕтме пулчĕç.
6 Эпир вара, тутлăлла çăкăр уявĕн кунĕсем иртсен,
Филиппы хулинчен караппа тухрăмăр. Унтан тепĕр
пилĕк кунтан Троадăра вĕсемпе тĕл пултăмăр, унта
çичĕ кун пурăнтăмăр.

### Евтиха вилĕмрен чĕртни

7 Эрнен малтанхи кунĕнче эпир пурте çăкăр хуçса
çимелли йăлана тума пухăнтăмăр. Тепĕр куннех
çула тухма шут тытнăран Павел вĕренекенсемпе
çур çĕрччченех калаçрĕ. 8 Эпир пухăннă хăтлă
пӳлĕмре çутаткăçсем нумайччĕ. 9 Чӳрече янаххи
çинче Евтих ятлă пĕр çамрăк ларатчĕ. Çавскер
Павелăн вăраха кайнă сăмахне итлесе ларнă май
çывăрах кайнă. Вара ыйхă тĕлĕшпе виççĕмĕш
хутран çĕре персе анчĕ. Ăна çĕклесе тăратнă чухне
вăл вилсе те кайнăччĕ ĕнтĕ. 10 Павел анчĕ те,
çамрăк çын çине пĕшкĕнсе, ăна ыталаса илчĕ. «Ан
кулянăр, – терĕ вăл, – унăн чунĕ тухман-ха!»
11 Унтан Павел çӳлти хута хăпарса çăкăр хуçса çирĕ.
Çапла вăл тул çутăличченех калаçса ларчĕ, кайран
çула тухса кайрĕ. 12 Çав вăхăтрах хайхи çамрăк
çынна, чĕрĕскерне, çавăтса кĕчĕç. Ăна курсан пурте
савăнмаллипех савăнчĕç.

### Троадăран Милита кайни

13 Павел çула тухиччченех эпир карап çине
лартăмăр та ăна хамăрпа илмешкĕн Асс хулине
ишсе кайрăмăр. Мĕншĕн тесен, хăй çуран кайма
пулнăран, вăл пире çапла тума хушса хăварнăччĕ.
14 Эпир унпа Асра тĕл пултăмăр та ăна лартса
Митилинăна пырса çитрĕмĕр. 15 Унтан ишсе кайса
тепĕр кунне эпир Хиос утравĕ патĕнче чарăнтăмăр,
тата тепĕр кунне вара Самоса çитрĕмĕр. Унтан
Трогиллине кĕрсе тухрăмăр та тепĕр кунне Милита
пытăмăр. 16 Асире вăхăта ытлашши ирттерес мар
тесе Павел Ефеса кĕрсе тăрас темерĕ. Мĕншĕн
тесен, ĕлкĕрейсен, аллăмĕш кун уявĕ тĕлне вăл
Иерусалимра пуласчĕ тесе васкарĕ.

### Павел Ефесри пресвитерсемпе калаçни

17 Вăл Милитран Ефеса çынсем ярса унти
ĕненекен ушкăн пресвитерĕсене чĕнтерсе пычĕ.
18 Вĕсем ун патне пухăнсан, Павел вĕсене çапла
каларĕ: «Асие килнĕренпех, малтанхи кунран
пуçласах, эпĕ яланах сирĕнпе пулнине эсир
пĕлетĕр. 19 Иудейсен усал шухăшĕсене пула хĕн-хур
курса нумай куççуль тăкма лекрĕ пулин те, эпĕ
пĕтĕм йăвашлăхăмпа Хуçамăршăн ĕçлерĕм.
20 Пĕтĕм халăх умĕнче е килрен киле çӳресе кирек
мĕн пирки ӳкĕтлесен те, кирек мĕн вĕрентсен те,
сире усăллине мĕн те пулин каламасăр хăварас
марччĕ терĕм. 21 Эпĕ иудейсене те, грексене те Турă
умĕнче ӳкĕнмелли çинчен, Иисус Христос Хуçамăра
ĕненмелли çинчен хыпарларăм. 22 Халĕ ĕнтĕ,
Святой Сывлăшăн туртăмне пăхăнса, манăн
Иерусалима каймалла. Эпĕ унта хама мĕн кĕтнине
те пĕлместĕп. 23 Мĕн пĕлетĕп-ха? Мана тĕрме тата
хуйхă кĕтни çинчен Святой Сывлăш кашни хуларах
асăрхаттарать. 24 Анчах та эпĕ ниме те пăхса
тăмастăп, пурнăçăма шеллеместĕп, Иисус Хуçамăр
хама шанса панă ĕçĕме – Турă тивлечĕллĕ Ырă

Хыпара ӳкĕтлесе вĕрентессине – вĕçне çити
хавасланса туса тăраясчĕ кăна. 25 Эпĕ сирĕн
хушшăрта Турă Патшалăхĕ çинчен ӳкĕтлесе
вĕрентрĕм. Ĕнтĕ тек эсир мана кураяс çуккине
пĕлетĕп. 26 Çавăнпа паянах сире пĕлтерес терĕм:
сирĕнтен хăшĕ те пулин çăлăнаймасан, эпĕ айăплă
мар. 27 Мĕншĕн тесен эпĕ сире Турă ирĕкĕ çинчен
мĕн хыпарламаллине йăлтах каларăм. 28 Çапла
вара, сыхланса пурăнăр, пĕтĕм кĕтĕве те сыхлăр.
Сире çав кĕтĕве пăхма Святой Сывлăш шанса панă.
Ĕненекен ушкăн кĕтӳçисем пулăр. Çав ушкăна –
Хуçамăрăн тата Туррăн Чиркĕвне – Вăл Хăйĕн
Юнĕпе тӳлесе илнĕ. 29 Эпĕ кайнă хыççăн кĕтĕве
хĕрхенмен тискер кашкăрсем сирĕн патăра
пырасса пĕлетĕп. 30 Вĕренекенсене хăйсем хыççăн
илсе каяс тесе ултавлă калаçакансем хăвăр
хушшăртанах тупăнĕç. 31 Çавăнпа ĕнтĕ сыхă тăрăр!
Эпĕ сирĕнтен кашнинех виçĕ çула яхăн кунĕн-
çĕрĕн, куççуль тухиччен вĕрентсе пурăннине ан
манăр. 32 Эй, тăванăмсем! Халĕ ĕнтĕ эпĕ сире Турă
аллине, Унăн тивлетлĕ сăмахĕн хӳттине шанса
парса хăваратăп. Турă сăмахĕ сире ӳкĕтлесех тăма
та, мĕн пур сăвапласа тасатнисемпе пĕрле еткерне
пама та пултарĕ. 33 Эпĕ никамран та ылтăн-кĕмĕл
те, çи-пуç та илесшĕн пулмарăм. 34 Хама тата
юлташăмсене кирлине хамăн çак аллăмсемпе
ĕçлесе илнине эсир пĕлетĕр. 35 Çапла тăрăшса
халсăррисене пулăшмаллине, Иисус Хуçамăр
сăмахне асра тытмаллине эпĕ сире хамăн
тĕслĕхĕмпе кăтартса патăм. Иисус Хăй çапла
каланă: „Парасси илессинчен пахарах“».
36 Çак сăмахсене каласан Павел чĕркуçленсе
ларнă та ыттисемпе пĕрле кĕлтунă. 37 Çавăн чухне
пурте йĕрсех янă, Павела ытала-ытала чуптунă.
38 Тек эсир мана кураяс çук тесе каланă Павелăн
сăмахĕсем вĕсен чунĕсене уйрăммăнах хытă пырса
тивнĕ. Кайран вĕсем ăна карап патне çитиччен
ăсатса янă.

### Иерусалима кайни

21 Эпир, вĕсенчен уйăрălсан, тинĕспе ишсе
тӳрех Коса пытăмăр. Тепĕр кунне Родоса,
унтан Патарăна çитрĕмĕр. 2 Унта Финикине каякан
пĕр карап тупрăмăр та çавăн çине ларса çула
тухрăмăр. 3 Кипр утравĕ курăна пуçласан, ăна
сулахая хăварса Сирие ишсе кайрăмăр. Карап
çинчи тиеве Тир хулинче пушатмалла пулнăран
эпир çав хула çыранĕнче чарăнтăмăр. 4 Унта эпир
Иисуса ĕненекенсене шыраса тупрăмăр та çичĕ кун
пурăнтăмăр. Святой Сывлăш систернипе вĕсем
Павела Иерусалима ярасшăн марччĕ. 5 Кайма вăхăт
çитсен эпир каллех çула тухрăмăр. Иисуса
ĕненекенсем, арăмĕсемпе тата ачисемпе пĕрлех,
пире хуларан тухиччен ăсатса ячĕç. Тинĕс
хĕрринче вара чĕркуçленсе ларсах кĕлтурăмăр.
6 Унтан пĕр-пĕринпе сывпуллашрăмăр та, эпир
карап çине лартăмăр, вĕсем килĕсене таврăнчĕç.
7 Çапла эпир тинĕспе Тиртан Птолемаидăна
çитрĕмĕр; унта тăвансемпе курнăçрăмăр та вĕсем
патĕнчех кун каçрăмăр. 8 Тепĕр кунне Павел тата
эпир, унпа пĕрле çӳрекенсем, çула тухрăмăр та
Кесарине çитрĕмĕр. Унта эпир Ырă Хыпар саракан
Филипп патĕнче пурăнтăмăр. Вăл çичĕ диаконран
пĕриччĕ. 9 Филипăн пророкла калаçакан тăватă
хĕрĕ пурччĕ. 10 Вĕсем патĕнче эпир чылай
пурăнтăмăр. Çав вăхăтра Иудейăран пĕр Агав ятлă
пророк пычĕ. 11 Пирĕн пата кĕрсен вăл Павел
пиçиххине илчĕ те хăйĕн алли-урине çыхса лартрĕ.
«Мана Святой Сывлăш çапла калать, – терĕ вăл
унтан. – Çак пиçиххи камăн, çавна иудейсем
Иерусалимра çапла тытса çыхĕç те урăх халăх
çыннисен аллине парĕç». 12 Çакна илтсен эпир те,
унти ытти çынсем те Павела: «Иерусалима ан кай»,
– тесе тархасларăмăр. 13 «Мĕн тăватăр эсир?
Мĕншĕн йĕрсе чĕреме çуратăр? – терĕ пире Павел.
– Эпĕ Иисус Хуçамăр ячĕшĕн Иерусалимра хама
çыхса пăрахтарма кăна мар, вилме те хатĕр». 14 Ăна
ӳкĕте кĕртсе пулмарĕ. «Хуçа Турă ирĕкĕ пултăр
эппин!» – терĕмĕр те лăплантăмăр.
15 Вĕсем патĕнче пурăннă хыççăн эпир çула
пуçтарăнтăмăр та Иерусалима кайма тухрăмăр.
16 Пирĕнпе пĕрле Кесарири хăш-пĕр вĕренекенсем
те пычĕç. Вĕсем пире пĕр Мнасон ятлă Кипр çынни
патне хваттере кĕртме пулчĕç. Çак Кипр çынни
тахçантанпах Иисус вĕренекенĕ пулнă-мĕн.

### Павел Иаков патĕнче

17 Иерусалима çитсен ĕненекен тăвансем пире
питĕ хапăлласа йышăнчĕç. 18 Тепĕр кунне эпир
Павелпа пĕрле Иаков патне кайрăмăр. Унта
пресвитерсем пурте пухăнчĕç. 19 Павел вĕсене
саламларĕ те Турă хăйĕн урлă урăх халăхсем
хушшинче мĕн-мĕн тунине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа
кăтартрĕ. 20 Ун сăмахне итлесе пĕтернĕ хыççăн
вĕсем Турра мухтарĕç. Унтан Павела çапла каларĕç:
«Иисуса ĕненекенсем хушшинче миçе пин иудей
пулнине куратăн-и, тăванăм? Вĕсем пурте Моисей
саккунне çирĕп пăхăнса пурăнаççĕ. 21 Сан пирки
вара вĕсем тĕрлĕ сăмах илтсе пĕтнĕ. Эсĕ ытти
халăхсем хушшинче пурăнакан иудейсене авалхи
йăласене тытса пыма та, ачисен ӳчĕсене кастарма
та чарасшăн имĕш. Çапла майпа эсĕ Моисей
саккунне пăрахма вĕрентетĕн тесе калаçкалаççĕ.
22 Мĕскер тумалла? Ахăртнех, халăх нумай
пуçтарăнать пулĕ, мĕншĕн тесен вĕсем эсĕ килсе
çитнине пĕлĕç. 23 Çавăнпа та эпир мĕн хушнине
тусамччĕ. Пирĕн хушăра Моисей саккунĕпе тупа
тунă тăватă çын пур. 24 Эсĕ вĕсене хăвпа ил те
вĕсемпе пĕрле тасалу йăлине туса ирттер. Вĕсен
Турра парне кӳнĕ тăкакĕсене ху çине ил, унтан
вĕсем çӳçĕсене кастарччăр. Вара пурте сан пирки
илтнĕ сăмах суя пулнине, эсĕ ху та Моисей
саккунне тытса пынине курĕç. 25 Ĕненекен урăх
халăх çыннисем патне вара эпир çапла çыру
ятăмăр: чӳклесе панă апат-çимĕçе ан çийĕр, апат-

çимĕçе юнран, пăвса вĕлернĕ выльăх-чĕрлĕх
ашĕнчен ан хатĕрлĕр, аскăнлăхран сыхланăр.
Çаксене тытса пыни çителĕклĕ ». 26 Унтан Павел çак
тупа тунă çынсене хăйпе пĕрле илсе тасалу йăлине
туса ирттерчĕ. Тепĕр кунне вăл Турă Çуртне кĕрсе
тасалу йăли хăçан вĕçленессине тата кашнишĕн
Турра хăçан парне парассине пĕлтерчĕ.

### Павела тытни

27 Тасалу йăлине тума пуçлани çичĕ кун çитнĕ.
Асири темиçе иудей, Павела Турă Çуртĕнче курсан,
халăха хĕтĕртсе янă та ăна тытнă. 28 Хăйсем çапла
кăшкăра пуçланă: «Эй, Израиль çыннисем!
Пулăшăр! Çак çын пур çĕрте те хамăра хирĕçле,
хамăр саккуна хирĕçле, Турă Çуртне хирĕçле
вĕрентӳ сарса çӳрет. Çитменнине вăл халĕ тата,
Турă Çуртне грексене ертсе килсе, çак сăваплă
вырăна ирсĕрлетрĕ!» 29 Вĕсем кăшт маларах Павела
хулара Трофим ятлă Ефес çыннипе пĕрле курнă
пулнă, çавăнпа вĕсем Павел Трофима та Турă
Çуртне илсе кĕнĕ пулĕ тесе шухăшланă. 30 Хула
халăхĕ хускалса кайнă, Турă Çурчĕ патне халăх
пухăнса тулнă. Унтан Павела тытса Турă Çуртĕнчен
сĕтĕрсе тухнă та алăкĕсене питĕрсе илнĕ. 31 Вĕсем
ăна вĕлерме те хатĕрленнĕ ĕнтĕ, анчах та пинпĕве
пĕтĕм Иерусалим пăлханни çинчен пĕлтерме
ĕлкĕрнĕ. 32 Лешĕ вара тӳрех, çĕрпӳсемпе
салтаксене пĕрле илсе, халăх пуçтарăннă çĕре
васканă. Вĕсене асăрхасан тин халăх Павела
хĕнеме чарăннă. 33 Çавăн чухне пинпӳ çывăхарах
пынă та Павела тытса икĕ сăнчăрпа çыхса лартма
хушнă. «Мĕнле çын ку? Мĕн турĕ вăл?» – тесе ыйтнă
унтан вăл халăхран. 34 Халăх хушшинчен пĕри пĕр
тĕрлĕ, тепри тепĕр тĕрлĕ кăшкăрнă. Кунашкал
пăтрашура тĕрĕссине нимĕн те пĕлме май
килменрен пинпӳ ăна крепоçе илсе кайма хушнă.
35 Картлашкапа хăпарнă чух халăх кĕпĕрленнĕрен
салтаксен ăна йăтса хăпарма тивнĕ, 36 мĕншĕн
тесен хыçалтан темĕн чухлĕ халăх: «Вĕлерес ăна!» –
тесе кăшкăрашса пынă. 37 Крепоçе кĕнĕ чухне
Павел пинпӳрен ыйтнă: «Ман сана каламалли пур.
Калама юрать-и?» «Эсĕ грекла та пĕлетĕн-им? –
тенĕ лешĕ. 38 – Нумаях пулмасть пĕр Египет çынни,
хулара пăлхав çĕклесе, хăйпе пĕрле пуш хире
тăватă пине яхăн вăрă-хурах ертсе кайнăччĕ.
Грекла пĕлетĕн пулсан, эсĕ çав çын пулмарăн
апла?» 39 «Эпĕ Киликири пурте пĕлекен Тарс
хулинче çуралнă иудей, – тенĕ Павел. – Тархасшăн,
халăх умĕнче сăмах калама ирĕк парсам мана».
40 Хăйне калаçма ирĕк парсан, Павел пусма
картлашки çинчен, халăха шăпланма ыйтса,
аллипе паллă кăтартнă. Пурте шăплансан вăл
еврейла çапла кала пуçланă.

### Павел хăйне хӳтĕлесе каланă сăмах

22 «Эй, тăван çынсем! Сумлă ватăсем! Халĕ ĕнтĕ
хама хӳтĕлесе каланине итлеме кăмăл
тусамăрччĕ!» 2 Хăйсемпе Павел еврейла калаçа
пуçланине илтсен вĕсем шăпăртах пулнă. 3 «Эпĕ
Киликири Тарс хулинче çуралнă иудей, – тенĕ вăл, –
кунта, Иерусалимра, мана Гамалиил вĕрентсе
ӳстернĕ. Эпĕ те сирнешкелех мăн асаттемĕрсен
саккунне тĕрĕс тытса пыракан, Турăшăн тăрăшакан
çын. 4 Иисус вĕрентĕвĕ хыççăн каякансене эпĕ хам
та вĕлересле хĕсĕрлерĕм; арçынĕсене те,
хĕрарăмĕсене те тытса çыхса тĕрмене хуптартăм.
5 Ку чăнах çапла пулнине аслă священниксемпе
ятлă-сумлă çынсем çирĕплетме пултараççĕ. Мана
вĕсем Дамаскри тăвансем валли çыру та çырса
парса янăччĕ. Вара эпĕ, унта ĕненекенсене
сăнчăрласа Иерусалима асаплантарма илсе килес
тесе, çула тухрăм. 6 Хайхи Дамаскалла çывхарса
пынă чухне, кăнтăрла тĕлĕнче, сасартăк тӳперен
ман тĕле куçа шартармалла çутă анчĕ. 7 Эпĕ çĕре
ӳкрĕм те хама калакан сасса илтрĕм. „Савл, Савл! –
терĕ çав сасă. – Мĕншĕн эсĕ Мана хĕсĕрлетĕн?"
8 Эпĕ Ăна хирĕç: „Кам пултăн Эсĕ?" – терĕм. Вара
Вăл мана çапла каларĕ: „Эпĕ – эсĕ хĕсĕрлекен
Назорей Иисус". 9 Манпа пĕрле пыракансем çутта
курсан хăраса ӳкнĕ пулнă, анчах та манпа
Калаçаканăн сассине илтмен. 10 „Турăçăм! – терĕм
эпĕ çавăн чухне. – Мĕн тăвас-ха манăн?" „Тăр та
Дамаска кай, – тавăрчĕ мана Хуçамăр, – хăвна мĕн
тума пӳрнине унта сана йăлтах калĕç". 11 Дамаска
мана хампа пĕрле пыракансем алран çавăтса илсе
пычĕç, мĕншĕн тесен çав çутă хăвачĕпе эпĕ куççăр
пулса ларнăччĕ. 12 Унта ман патăма пĕр Анания
ятлă çын пычĕ. Моисей саккунне çирĕп тытса
пурăннăран ăна Дамаскри иудейсем пурте питĕ
хисепленĕ. Анания ман ума пырса тăчĕ те каларĕ:
„Савл тăванăм! Куракан пул!" Эпĕ çав самантрах ăна
куртăм. 14 Вара вăл мана каларĕ: „Мăн
асаттемĕрсен Турри Хăй ирĕкне пĕлтерес тесе, Тӳрĕ
Христоса кăтартас тесе, Хăйĕн çăварĕнчен тухакан
сăмаха итлеттерес тесе сана малтанах суйласа
илнĕ. 15 Мĕншĕн тесен эсĕ пур çын умĕнче те Ун
çинчен çирĕплетсе пĕлтерĕн, ху мĕн курни-илтни
çинчен каласа параканĕ пулăн. 16 Çапла ĕнтĕ,
мĕншĕн вăраха яратăн? Халех тăр та Иисус Хуçамăр
ячĕпе шыва кĕрсе çылăхусенчен тасал". 17 Унтан,
Иерусалима тавăрăнсан, Турă Çуртĕнче кĕлтунă
чухне эпĕ питĕ хавхаланса кайрăм. 18 Вара Ăна
куртăм. „Часрах Иерусалимран тухса кай, – терĕ Вăл
мана, – мĕншĕн тесен эсĕ Ман çинчен çирĕплетсе
каланине кунтисем йышăнмĕç". 19 „Турăçăм! – терĕм
вара эпĕ. – Сана ĕненекенсене эпĕ тĕрмене
хуптарнине, синагогăсенче епле хĕненине вĕсем
пĕлсе тăраççĕ-çке. 20 Сан çинчен çирĕплетсе
калакан Стефан юнне тăкнă чухне эпĕ хам та, ăна
вĕлернине ырласа, хĕнекенсен тумтирĕсене
сыхласа унтах тăтăм". 21 Вара Хуçамăр мана çапла
каларĕ: „Каях, Эпĕ сана инçене, урăх халăхсем
патне яратăп"».

### Павел пинпӳ умĕнче

22 Çак сăмахсене каличчен халăх Павела итлес
тесех итленĕ. Çакăн хыççăн вара кăшкăрашма
пуçланă: «Кунашкал çын çĕр питĕнчен çухалтăр!
Вăл пурăнма тивĕç мар!» 23 Вĕсем çаплах
кăшкăрашнă, тумтирĕсене хыва-хыва пенĕ, ывăçла-
ывăçла çӳлелле тусан сапнă. 24 Çав вăхăтра пинпӳ
Павела крепоçе илсе кĕртме хушнă. Халăх мĕн
сăлтавпа ăна хирĕç пулнине, кăшкăрашнине пĕлес
тесе вăл Павела чĕн пушăпа çаптарма хушнă.
25 Анчах та хăйне тăсса хурса чĕнсемпе çыхсан
Павел юнашар тăракан çĕрпĕве çапла каланă: «Рим
гражданинне судсăр-мĕнсĕрех çаптарма сире кам
ирĕк панă?» 26 Çĕрпӳ, çак сăмахсене илтсен, пинпӳ
патне пынă та çапла каланă: «Мĕн тăвасшăн эсир?
Ку çын Рим гражданинĕ-çке!» 27 Вара пинпӳ Павел
патне пырса ыйтнă: «Эсĕ чăнах та Рим гражданинĕ-
и?» «Чăнах», – тенĕ Павел. 28 «Рим гражданлăхне
илес тесе нумай укçа-тенкĕ тăккаламалла пулчĕ
манăн», – тенĕ пинпӳ. «Эпĕ вара Рим гражданинĕ
пулса çуралнă», – хушса хунă Павел. 29 Ăна
асаплантарма хатĕрленнисем çавăнтах ун
патĕнчен пăрахса кайнă. Пинпӳ хăй Рим
гражданинне çыхтарнине пĕлнĕ хыççăн шикленсе
ӳкнĕ. 30 Тепĕр кунне пинпӳ, иудейсем Павела
мĕншĕн айăпланине тĕплĕн пĕлес тесе, ăна
тимĕрленĕ сăнчăрсене вĕçерттернĕ. Унтан вăл аслă
священниксене тата синедрионра ларакан ытти
çынсене пурне те пухăнма ыйтнă. Вара Павела унта
илсе пынă та пуху умне кăларса тăратнă.

### Павел синедрион канашĕ умĕнче

23 Павел синедрионра ларакансем çине пăхса
çапла каланă: «Эй, тăван çыннăмăрсем! Эпĕ
мĕн çак кунчченех Турă умĕнче таса кăмăлпа
пурăнтăм». 2 Анчах та аслă священник Анания
Павелпа юнашар тăракансене ăна тутинчен çапма
хушнă. 3 Павел вара каланă: «Эй, хура чунна
шурăпа сăрланăскер, Турă сана та çапĕ-ха! Сана
кунта мана саккунпа суд тума лартнă, эсĕ вара,
мана çапма хушса, саккуна ху пăсатăн!» 4 «Эсĕ
Туррăн аслă священникне хурлатăн-и-ха?» – тенĕ
юнашар тăракансем. 5 Вара Павел каланă:
«Тăванăмсем! Вăл аслă священник пулнине эпĕ
пĕлмен. Çырнинче чăнах та çапла калани пур:
„Хăвăн халăхун пуçлăхне усал сăмах ан кала“».
6 Синедрионра ларакансен пĕр пайĕ саддукейсем,
тепĕр пайĕ фарисейсем пулнине Павел пĕлнĕ.
Çавăнпа вăл канаш умĕнчех хыттăн çапла каланă:
«Эй, тăван çыннăмсем! Эпĕ фарисей, фарисей
ывăлĕ, мана вилнисем чĕрĕлсе тăрасса шанса
пурăннăшăн суд тăваççĕ». 7 Çак сăмахсене
каласанах фарисейсемпе саддукейсем тавлашса
кайнă, вара пуху икĕ пая уйăрăлнă. 8 Мĕншĕн тесен
саддукейсем вилнисем чĕрĕлсе тăрасси те,
ангелсем те, усал сывлăшсем те çук теççĕ.
Фарисейсем вара çаксем пурте пур тесе ĕненеççĕ.
9 Пуху кĕрлесех кайнă: Моисей саккунне
вĕрентекен хăш-пĕр фарисейсем ура çине сиксе
тăрсах тавлаша пуçланă. «Ку çынна айăплама эпир
нимле сăлтав та курмастпăр, – тенĕ вĕсем. – Тен,
çак çын чĕлхи-çăварĕпе ангел е Сывлăш калаçнă-
ха? Турра хирĕç каяр мар». 10 Тавлашу хĕрнĕçемĕн
хĕрсе пынă. Тавлашакансем Павела туртса
çурасран шикленсе, пинпӳ салтаксене Павела
пухуран илсе тухса крепоçе леçме хушнă.
11 Тепĕр каçхине вара ăна Хуçамăр курăннă.
«Хастар пул! – тенĕ Вăл. – Эсĕ Ман пирки
Иерусалимра мĕнле çирĕплетсе пĕлтертĕн, Римра
та çавнашкалах пĕлтерĕн-ха».

### Павела хирĕç тунă кавар

12 Тепĕр кун ирхине хăш-пĕр иудейсем пуçтарăннă
та Павела вĕлерме кавар тунă, ăна вĕлермесĕр
ĕçместпĕр те, çиместпĕр те тесе тупа тунă. 13 Çапла
тупа тăвакансем хĕрĕхĕн ытла пулнă. 14 Вĕсем аслă
священниксемпе ятлă-сумлă çынсем патне пырса
çапла каланă: «Эпир Павела вĕлермесĕр нимĕн те
çиместпĕр тесе тупа турăмăр. 15 Çапла вара эсир,
синедрионра ларакансемпе пĕрле, унăн ĕçĕпе
тĕплĕнрех паллашас йӳтĕмпе ăна ыран хăвăр
патăра кăларттарăр. Çакна тума пинпĕве паянах
пĕлтерсе хурăр. Эпир вара малтанах хатĕрленсе
тăрăпăр та ăна кунта çитиччĕнех вĕлерĕпĕр». 16 Çак
кавар пирки Павел аппăшĕн ывăлĕ илтнĕ. Вара
кайнă та, крепоçе кĕрсе, çакăн çинчен Павела
систернĕ. 17 Павел çĕрпӳсенчен пĕрне чĕнсе
илтернĕ те ăна çапла каланă: «Çак ачана пинпӳ
патне ертсе кайăр-ха, унăн ăна темскер каламалли
пур». 18 Лешĕ ачана пинпӳ патне илсе пынă та:
«Тĕрмере ларакан Павел мана чĕнтерчĕ те çак
ачана сан патна ертсе килме ыйтрĕ. Унăн сана
темскер каламалли пур», – тенĕ. 19 Пинпӳ, ачана
аллинчен çавăтса, аяккарах пăрăннă та: «Санăн
мана мĕн каламалли пур?» – тесе ыйтнă. 20 Ачи вара
çакăн пек хуравланă: «Иудейсен пуçлăхĕсем сана
ыран Павела синедриона илсе пыртарасшăн. Унăн
ĕçĕпе тĕплĕнрех паллашас йӳтĕмпе вĕсем çакăн
пирки калаçса татăлнă ĕнтĕ. 21 Анчах та эсĕ вĕсене
ан итле, мĕншĕн тесен ăна вĕлерме хĕрĕх çынран
та ытларах сыхласа лараççĕ. Вĕсем Павела
вĕлермесĕр ĕçместпĕр те, çиместпĕр те тесе тупа
тунă. Халĕ вĕсем, эсĕ хушасса кĕтсе, хатĕр тăраççĕ».
22 «Ху мана çакна каласа кăтартнине никама та ан
шарла», – тесе пинпӳ ачана кăларса янă.

### Павела Кесарине леçни

23 Вара, икĕ çĕрпĕве чĕнсе илсе, çапла хушнă: «Ик
çĕр салтак, çитмĕл юланут тата ик çĕр ухăçă
хатĕрлĕр. Каçхине тăхăр сехетсенче вĕсен
Кесарине каймалла. 24 Павела Феликс аслă пуçлăх
патне леçмешкĕн ашаксем те хатĕрлĕр». 25 Унтан
вăл çакăн пек çыру çырса панă: 26 «Эпĕ, Клавдий

Лисий, хисеплĕрен те хисеплĕ Феликс пуçлăха
салам яратăп. 27 Çак çынна иудейсем тытнă та
вĕлермех хатĕрленнĕччĕ. Анчах та эпĕ, вăл Рим
гражданинĕ пулнине пĕлсен, хамăн салтаксемпе
пытăм та ăна туртса илтĕм. 28 Унтан, мĕншĕн
айăпланине пĕлес тесе, ăна иудейсен синедрионне
илсе пытăм. 29 Вара çакна пĕлтĕм: вĕсем ăна хăйсен
Моисей саккунĕ пирки тавлашнăшăн айăплаççĕ
иккен. Анчах та вĕлермешкĕн е тĕрмене
хупмашкăн унăн нимĕнле айăп та çук. 30 Ăна хирĕç
иудейсем кавар тунине пĕлсенех эпĕ çав çынна сан
патна леçтерес терĕм. Ăна айăплакансене те ун
çинчен сан умăнта каласа пама хушрăм. Сывă пул».
31 Çапла ĕнтĕ салтаксем, хăйсене хушнине
пурнăçласа, Павела çĕрле Антипатридăна илсе
кайнă. 32 Тепĕр кунне ăна малалла юланутсем кăна
леçнĕ, ыттисем вара тавăрăннă. 33 Кесарине çитсен
утлă салтаксем хайхи çырăва аслă пуçлăха панă,
Павела та ун патĕнче хăварнă. 34 Çырăвне вуласа
тухсан аслă пуçлăх Павелран вăл хăш тăрăхри çын
пулнине ыйтнă. Павел Килики çынни иккенне
пĕлсен, Феликс çапла каланă: 35 «Сан сăмахна эпĕ
хăвна айăплакансем килсе çитсен итлĕп». Унтан
ăна Ирод преторине хуптарса хурал тăратма
хушнă.

### Павела айăплани

24 Тепĕр пилĕк кунтан Анания аслă священник
ятлă-сумлă çынсемпе тата Тертулл ятлă ăста
калаçакан айăплавçăпа Кесарине пырса çитнĕ.
Вĕсем аслă пуçлăха Павел çинчен çăхав панă.
2 Павела чĕнсе пырсан Тертулл çакнашкал айăплав
сăмахĕ каланă: «Эй, хисеплĕрен те хисеплĕ Феликс!
Эсĕ ертсе пынипе эпир чылай хушă канăç
пурăнăçпа пурăнатпăр, эсĕ тăрăшнипе халăх
пурăнăçĕ лайăхланчĕ, çавăнпа сана эпир пур çĕрте
те яланах тем тĕрлĕ те тав тăватпăр. 4 Эпир сана
ытлашши чăрмантарасшăн мар, пирĕн кĕске
сăмахăмăра хăвăн ырă кăмăлупа итлесе пĕтерме
тархаслатăп. 5 Çак çын халăха сиен тăвать; мĕн пур
иудейсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе çӳрет,
Назорейсен суя тĕн вĕрентĕвне ертсе пырать. 6 Вăл
куçкĕретех пирĕн Турă Çуртне те ирсĕрлетме хăйрĕ,
çавăнпа эпир ăна хамăр саккунпа айăплас тесе
тытрăмăр. 7 Анчах та Лисий пинпӳ ăна пирĕн
аллăмăртан вăйпа пусахласах туртса илчĕ те сан
патна леçтерчĕ. 8 Пире вара, айăплакансене, сан
патна килме хушрĕ. Эпир ăна мĕн сăлтавпа
айăпланине пĕтĕмпех эсĕ унран хăйĕнченех
тĕпчесе ыйтса пĕлме пултаратăн». 9 Çак сăмахсем
чăн тесе иудейсем те çирĕплетнĕ.

### Павел хăйне Феликс умĕнче хӳтĕлесе калани

10 Аслă пуçлăх паллă кăтартса калаçма ирĕк
парсан, Павел хăйне хӳтĕлесе çапла каланă: «Эсĕ
чылай çул хушши çак халăха тĕрĕс суд туса
пурăннине пĕлсе тăрса, эпĕ хамăн ĕçĕме сан
умăнта ирĕклĕнех хӳтĕлеме тăрăшăп. 11 Эпĕ Турра
пуççапма Иерусалима килни пĕр вун икĕ кунтан та
ытла мар. Çакна эсĕ тĕрĕслеме пултаратăн. 12 Эпĕ
Турă Çуртĕнче те, синагогăра та, хулара та кампа та
пулин тавлашнине е халăха пăлхатса çӳренине
вĕсенчен пĕри те курман. 13 Халĕ хăйсем мана
хирĕç кăларса тăратнă айăплава вĕсем нимĕнпе те
ĕнентереймĕç. 14 Анчах та эпĕ пĕр япала пирки
тунмастăп. Эпĕ чăнах та хама айăплакансем тĕрĕс
мар ĕненӳ текен вĕрентĕве тытса пыратăп. Çав
вĕрентӳ тăрăх эпĕ Моисей саккунĕнче çырнине
тата пророксем каланине пĕтĕмпех ĕненсе тăрса,
мăн асаттемĕрсен Турришĕн тăрăшатăп. 15 Вилнĕ
çынсене – тӳрĕ тата тӳрĕ мар пурăннисене те – Турă
чĕртсе тăратасса шанатăп, çапла пуласса вĕсем
хăйсем те кĕтеççĕ. 16 Çавăнпа та эпĕ Турă умĕнче те,
çынсем умĕнче те таса чунлă пуласшăн яланах
тăрăшатăп. 17 Акă эпĕ, чылай çул иртсен, хам
халăхăма пулăшма пуçтарнă укçа-тенкĕне пама
тата Турра парне кӳме Иерусалима килтĕм. 18 Мана
Турă Çуртĕнче тасалу йăлине туса ирттернĕ хыççăн
тытрĕç. Унта нимле халăх таврашĕ те, нимле шăв-
шав та пулман. 19 Тытасса мана Асирен килнĕ хăш-
пĕр иудейсем тытрĕç. Мана хирĕç мĕн те пулин
каламалли пур пулсан, мана сан умăнта вĕсен
айăпласа тăмаллаччĕ. 20 Анчах вĕсем çăхавпа
урăххисене ячĕç. Эпĕ синедрион канашĕ умĕнче
тăнă чухне манра мĕнле айăп тупнине çаксем
каласа паччăр эппин. 21 Каласан та вĕсем çак пĕр
сăмаха анчах калĕç. Чăнах та, эпĕ вĕсене: эсир
мана халĕ вилнисем чĕрĕлсе тăрасси çинчен
вĕрентнĕшĕн суд тăватăр тесе хыттăнах
каласаттăм».
22 Феликс вара вĕсен ĕçне ӳлĕме хăварнă. «Сирĕн
ĕçĕре Лисий пинпӳ килсен, çав вĕрентӳ çинчен хам
та тĕплĕнрех пĕлсен, татса парăп», – тенĕ вăл.
23 Çĕрпĕве вăл Павела хуралласа усрама хушнă,
анчах та ăна хĕсĕрлеме чарнă. Унăн çывăх
çыннисене ун патне пырса çӳреме, ăна пулăшса
тăма пĕрне те чарма хушман.
24 Тепĕр темиçе кунран унта Феликс хăйĕн
Друзилла ятлă арăмĕпе пынă. Арăмĕ унăн иудей
çынни пулнă. Феликс Павела чĕнтернĕ те вăл Иисус
Христоса ĕненесси çинчен каланине итлес тенĕ.
25 Анчах та Павел тӳрĕлĕх çинчен, чаракլăх çинчен,
пулас суд çинчен кала пуçласан, Феликс, хăраса
ӳксе, унăн сăмахне татнă: «Паянлăха çитĕ! Вăхăт
тупăнсанах сана тата чĕнтерĕп», – тенĕ. 26 Çав
хушăрах вăл Павел хăйне тĕрмерен кăларттарма
укçа сĕнессе кĕтнĕ, çавăнпа та, ăна чĕнтере-
чĕнтере, унпа калаçнă. 27 Анчах та икĕ çул иртсен
Феликс вырăнне аслă пуçлăха Порций Фест ларнă.
Иудейсене юрас тесе Феликс Павела тĕрмерех
хăварнă.

### Павел хăйне император патĕнче суд тутарма ыйтни

25 Фест, хăйне тытса тăма панă çĕр-шыва çитнĕ-
çитменех, виçĕ кунран Кесарирен

Иерусалима тухса кайнӑ. 2 Ҫавӑн чухне аслӑ
священникпа иудейсен паллӑ ҫыннисем Павел
ҫинчен ҫӑхав пама ун патне пынӑ та ӑна ӳкӗте
кӗртме тӑрӑшса: 3 «Пирӗншӗн ырӑ ӗҫ тусам, Павела
Иерусалима чӗнтерсе илсем», – тесе тархасланӑ.
Хӑйсем вара Павела ҫул ҫинче вӗлерме усал шухӑш
тытнӑ. 4 Анчах та Фест ҫапла тавӑрнӑ: «Павел халӗ
Кесарире тӗрмере ларать, ҫывӑх вӑхӑтрах эпӗ хам
та унта кайма шухӑшлатӑп. 5 Ҫавӑнпа та сирӗнтен
хӑшӗсем манпа пӗрле пыма пултараҫҫӗ, пыччӑр.
Ҫав ҫыннӑн мӗнле те пулин айӑпӗ пур пулсан,
айӑплаччӑр».
6 Пӗр сакӑр е вунӑ куна яхӑн унта пурӑнсан Фест
Кесарине тавӑрӑннӑ. Вара тепӗр куннех, суд
тумалли вырӑна ларса, Павела илсе пыма хушнӑ.
7 Суда илсе пырсанах Павела Иерусалимран пынӑ
иудейсем сырса илнӗ, ун ҫинчен нумай йывӑр айӑп
каланӑ, анчах айӑпӗсем чӑннине ӗнентереймен.
8 Павел вара, хӑйне тӳрре кӑларса, ҫапла каланӑ:
«Эпӗ Моисей саккунне хирӗҫле те, Турӑ Ҫуртне
хирӗҫле те, императора хирӗҫле те нимӗнле усал ӗҫ
те туман». 9 Фест, иудейсене юрасшӑн пулса,
Павелран ыйтнӑ: «Эпӗ ку ӗҫпе сана Иерусалимра
суд тӑвӑп, эсӗ унта пырас теместӗн-и?» 10 «Эпӗ
ахаль те хама тивӗҫлӗ суд умӗнче, император сучӗ
умӗнче, тӑратӑп. Иудейсене эпӗ нимӗнпе те хур
туманнине эсӗ ху та лайӑх пӗлетӗн, – тенӗ Павел.
11 – Ҫапла вара, эпӗ айӑплах пулсан, вӗлерме
тивӗҫлине мӗн те пулин тунӑ пулсан – вилме хатӗр.
Иудейсен айӑплавӗнче тӗрӗсси ним те ҫук пулсан –
мана вӗсен аллине пама никамӑн та ирӗк ҫук. Хама
император патӗнче суд тутарма ыйтатӑп». 12 Вара
Фест хӑйӗн канашӗнчи ҫынсемпе калаҫса илнӗ те
ҫапла тавӑрнӑ: «Эсӗ император патӗнче суд
тутарма ыйтрӑн, ӗнтӗ сана император патне илсе
кайӗҫ».

### Павелпа Агриппа патша

13 Тепӗр темиҫе кунран Феста саламлама
Кесарине Иудея патши Агриппа тата унӑн арӑмӗ
Вереника пырса ҫитнӗ. 14 Вӗсем унта чылай
пурӑннӑ. Фест вара патшана Павел ӗҫӗ пирки
каласа панӑ. «Пирӗн кунта – тенӗ вӑл, – Феликс
тӗрмене хупса хӑварнӑ пӗр ҫын пур. 15 Эпӗ
Иерусалимра чухне иудейсен аслӑ
священникӗсемпе ятлӑ-сумлӑ ҫыннисем ун ҫинчен
ҫӑхав пама ман патӑма пычӗҫ, ӑна суд тума ыйтрӗҫ.
16 Эпӗ вӗсене ҫапла тавӑрса каларӑм: Рим йӑлипе,
айӑпланаканпа айӑплакансене куҫа-куҫӑн
тӑратмалла тата айӑпланаканне хӳтӗленме ирӗк
памалла, унсӑрӑн ҫынна вӗлерме тытса пама
юрамасть. 17 Вӗсем кунта килсессӗн вара, ӗҫе
вӑраха ямасӑр, тепӗр куннех эпӗ суд тумалли
вырӑна лартӑм та ҫав ҫынна илсе пыма хушрӑм.
18 Айӑплакансем ӑна судра сырса илчӗҫ, анчах эп
кӗтнӗ айӑплавсенчен пӗрне те кӑтартса
параймарӗҫ. 19 Ҫапах та вӗсем Павелпа хӑйсен
Турра хисеплес йӗрки ҫинчен тата пӗр вилнӗ темле
Иисус пирки тавлашкаларӗҫ. Павел ҫирӗплетнӗ
тӑрӑх, Вӑл чӗрех иккен. 20 Ку ыйтӑва татса пама
иккӗленсе эпӗ Павела ҫапла каларӑм: „Хӑвна ку
ӗҫпе Иерусалимра суд тутарма эсӗ унта пырас
теместӗн-и?“ 21 Анчах та Павел хӑйне император
сучӗпе явап тыттарма ыйтрӗ. Ҫавӑнпа эпӗ ӑна
император патне яма май киличчен тӗрмере тытма
хушрӑм». 22 «Ку ҫынна ман хамӑн та итлесе пӑхас
килет», – тенӗ Агриппа вара Феста. «Тархасшӑн, –
сӗннӗ лешӗ, – эсӗ ӑна ыранах итлеме пултаратӑн».
23 Тепӗр кунне Агриппӑпа Вереника суд ҫуртне
питӗ чаплӑн, хӑйсемпе пӗрле пинпӳсемпе ятлӑ-
сумлӑ ҫынсене илсе, пырса кӗнӗ. Фест хушнипе
Павела суд ҫуртне илсе пынӑ. 24 Вара Фест ҫапла
каланӑ: «Эй, Агриппа патша тата пирӗнпе пӗрле
кунта пухӑннӑ ытти ҫынсем! Акӑ сирӗн умӑрта пӗр
ҫын тӑрать. Ҫак ҫынна айӑпласа ман патӑма
Иерусалимра та, кунта та иудей ҫыннисем тем
чухлӗн пычӗҫ, ӑна вӗлермелле тесе кӑшкӑрчӗҫ.
25 Анчах та вӑл вилме тивӗҫлӗ ӗҫ тунине эпӗ
тупаймарӑм. Вара, хӑй император патӗнче суд
тутарма ыйтнӑран, эпӗ ӑна унта ярас тесе
йышӑнтӑм. 26 Эпӗ ун пирки император патне мӗн
ҫырса ямаллине те пӗлместӗп. Ҫавӑнпа та ӑна сире,
уйрӑмах, Агриппа патша, сана, кӑтартас терӗм.
Эсир лайӑххӑн тӗпчесе пӗлсен вара мӗн ҫырса
ямалли те паллӑ пулӗ. 27 Мӗншӗн тесен хупнӑ
ҫынна айӑпне кӑтартмасӑрах император патне яни
мана ӑссӑрла хӑтланнӑ пек туйӑнать».

### Павел хӑйне Агриппа умӗнче хӳтӗлесе калани

26 «Хӑвна хӳтӗлесе калама сана сӑмах
паратпӑр», – тенӗ Павела Агриппа. Вара
Павел аллине ҫӗкленӗ те хӑйне хӳтӗлесе ҫапла
сӑмах каланӑ: 2 «Эй, Агриппа патша! Иудейсен мӗн
пур айӑплавӗнчен паян сан умӑнта хӳтӗленме май
килнишӗн хама телейлӗ тесе шутлатӑп.
3 Ҫитменнине тата эсӗ иудейсен йӑлисемпе
тавлашуллӑ шухӑшӗсене пӗтӗмпех пӗлетӗн.
Ҫавӑнпа та тархаслатӑп: ман сӑмахӑма чӑтӑмлӑн
итлесе пӗтерсем. 4 Иудейсем пурте ман пурӑнӑҫӑм
ҫинчен аван пӗлеҫҫӗ. Мӗн ҫамрӑкранпах эпӗ тӑван
халӑх хушшинче Иерусалимра пурӑнтӑм. 5 Вӗсем
мана тахҫантанпах пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, ҫавӑнпа эпӗ
фарисей пулнине, хамӑр йӑла-йӗркене питӗ ҫирӗп
тытса пурӑннине, кӑмӑлӗсем пулсан, хӑйсемех
кӑтартса пама пултарӗҫ. 6 Турӑ мӑн асаттемӗрсене
панӑ сӑмаха шаннишӗн паян акӑ манӑн суд умӗнче
тӑма тивет. 7 Пирӗн вун икӗ йӑхӑмӑр та, Турӑ
сӑмахӗ пурнӑҫланасса шанса, кунӗн-ҫӗрӗн Турӑшӑн
тӑрӑшать. Эй, Агриппа патша! Иудейсем мана ҫав
шанчӑкшӑн айӑплаҫҫӗ те ӗнтӗ. 8 Мӗнех? Нивушлӗ
эсир Турӑ вилнисене чӗртсе тӑратма
пултараймасть тесе шухӑшлатӑр? 9 Чӑн та, Назорей
Иисус вӗрентӗвне хирӗҫ тӑма манӑн хамӑн та
нумай тӑрӑшмалла-ха тесе шухӑшлаттӑм.
10 Иерусалимра эпӗ ҫав ӗҫе туса пурӑнтӑм та: аслӑ
священниксем панӑ ирӗкпе усӑ курса нумай

ĕненекене тĕрмене хуптартăм, вĕсене вĕлернĕ
чухне те эпĕ вĕлерекенсем майлă пултăм. 11 Эпĕ
вĕсене синагогăран синагогăна çӳресе
асаплантараттăм, Иисуса хурлама ирĕксĕрлеттĕм.
Ĕненекенсем çине çиллĕм тулса çитнипе эпĕ вĕсене
ытти хуласене кайса та хĕсĕрлеттĕм.

### Павел хăйне курăнни çинчен каласа пани

12 Аслă священниксен ирĕкĕпе тата вĕсем
хушнипе эпĕ Дамаска та çав тĕллевпех тухса
кайрăм. 13 Эй, патша! Çул çинче чухне, кăнтăрлапа,
мана тӳперен хĕвел çутинчен те ялтăрарах çутă
курăнчĕ. Манăн хамăн та, пĕрле пыракансен те куç
шарсах кайрĕ. 14 Эпир пурте çĕре ӳкрĕмĕр. Вара
мана еврейла калаçакан сасă илтĕнчĕ. „Эй, Савл,
Савл, – терĕ çав сасă, – эсĕ Мана мĕншĕн
хĕсĕрлетĕн? Çĕнме çук вăя хирĕç ан пыр, хăвнах
йывăр пулĕ“. 15 Эпĕ вара ыйтрăм: „Кам пултăн Эсĕ?“
„Эпĕ – эсĕ хĕсĕрлекен Иисус, – тавăрчĕ Вăл. 16 – Ĕнтĕ
халĕ уру çине тăрах; эсĕ халĕ ху мĕн курнине тата
Эпĕ сана мĕн пĕлтерессине каласа кăтартакан,
çавăншăн ĕçлесе тăракан пулăн. Çавăнпа Эпĕ сана
курăнтăм та. 17 Эпĕ сана иудейсемпе урăх халăх
çыннисем пĕтересрен упраса хăварса, халĕ сана
çавсем патнех яратăп. 18 Мана ĕненнипе вĕсен
çылăхĕсем каçарăнмалла пулччăр тесе, сăвапласа
тасатнисемпе пĕр шăпаллă пулччăр тесе эсĕ вĕсен
куçĕсене уçăн. Вĕсене шуйттан аллинчен хăтарса
Турă аллине парăн, тĕттĕмлĕхрен çутта илсе тухăн“.
19 Эй, Агриппа патша! Çавăнпа эпĕ тӳперен
курăннине итлемесĕр тăма пултараймарăм. 20 Эпĕ
чăн малтанах Дамаскпа Иерусалимра пултăм.
Унтан пĕтĕм Иудея çĕрĕнчи çынсене тата ытти
халăхсене ӳкĕнсе Турă енне çавăрăнма, ӳкĕнĕçе
тивĕçлĕ ĕçсем тума вĕрентсе çӳрерĕм. 21 Çавăншăн
мана иудейсем Турă Çуртĕнчех ярса тытрĕç те
вĕлересшĕн пулчĕç. 22 Анчах та Турă пулăшнипе эпĕ
паян кунччenех тĕрĕс-тĕкел, пĕчĕккисенчен
пуçласа аслисем таранах çакна каласа
çирĕплететĕп: Христосăн асап тӳсмеллеччĕ,
вилнисенчен чăн малтан чĕрĕлсе тăрса иудей
халăхне те, ытти халăхсене те çăлăнăç çути çинчен
пĕлтермеллеччĕ. Çакăн çинчен пророксемпе
Моисеях каласа пĕлтернĕ, вĕсем каланинчен ытла
эпĕ нимĕн те каламан».
24 Павел хăйне çапла хӳтĕленĕ чухне Фест ăна
пӳлсе кăшкăрса тăкнă: «Павел! Эсĕ ăсран тайăлнă!
Нумай пĕлни сана ухмаха ертет!» 25 «Хисеплĕрен те
хисеплĕ Фест, – тенĕ вара ăна Павел, – эпĕ ухмаха
ермен, тĕрĕс те чăн сăмахсем калатăп. 26 Патша та
кун пирки пĕтĕмпех пĕлет, çавăнпа та эпĕ
хăюллăнах калаçатăп. Мĕн те пулин унран пытарса
хăварнă пулĕ тесе шутламастăп, мĕншĕн тесен ку
ĕç кус хысĕнче пулса иртмен. 27 Эй, Агриппа патша!
Эсĕ пророксене ĕненетĕн-и? Ĕненетĕн. Эсĕ
ĕненнине пĕлетĕп». 28 «Эсĕ мана ытла хăвăрт
Христоса ĕнентересшĕн мар-и?» – тенĕ Агриппа.
29 «Хăвăрт-и, вăрах-и, – анчах та эсĕ кăна мар, паян
хама итлекенсем пурте манашкал пулччăр тесе
Турра кĕлтăваттăм, анчах та вĕсем манашкал
сăнчăрта ан пулччăрах».
30 Çак сăмахсене илтсен патша та, аслă пуçлăх та,
Вереника та, вĕсемпе пĕрле ларакансем те ура
çине тăнă; 31 унтан, аяккарах пăрăнса, пĕр-пĕринпе
çапла калаçа пуçланă: «Ку çын вĕлерме е тĕрмене
хупма тивĕçлĕ нимĕнле усал ĕç те туман».
32 «Император судне хăй ыйтман пулсан ăна ирĕке
яма та пулатчĕ», – тенĕ Агриппа патша Феста.
Çавăнпа вара аслă пуçлăх ăна император патне яма
йышăннă.

### Рима кайни

27 Пире Италие караппа ярас терĕç. Вара
Павела тата тĕрмене хупнă ытти çынсене
император полкĕнчи Юлий çĕрпӳ аллине пачĕç.
2 Пирĕн хулара Аси çыранĕ хĕррипе кайма
пуçтарăннă пĕр Адрамит карапĕ чарăннăччĕ. Эпир
çавăн çине лартăмăр та тинĕсе тухрăмăр. Пирĕнпе
пĕрле тата Македони çынни, фессалоникăсем
Аристарх пурччĕ. 3 Тепĕр кунне эпир Сидон тĕлĕнче
чарăнтăмăр. Юлий хăйне Павелпа кăмăллă
тыткаларĕ, ăна хăйĕн тусĕсем патне кайса килме,
вĕсенчен пулăшу илме те ирĕк пачĕ. 4 Хирĕçле çил
питĕ вăйлă пулнăран унтан тухсан эпир Кипр
утравĕн çыранĕсен хӳттипе ишрĕмĕр. 5 Вара тин,
Киликипе Памфили тĕлĕнче тинĕс урлă каçса,
Ликири Миры хулине пырса çитрĕмĕр. 6 Унта Юлий
çĕрпӳ Италие каякан Александрия карапне шыраса
тупрĕ те пире ун çине лартрĕ. 7 Книда эпир темиçе
кунран кăна, аран-аран çиткелерĕмĕр. Майлă çил
пулман пирки пире Крит утравĕн хӳттипе Салмон
сăмсахĕ тĕлĕнчен ишсе пыма лекрĕ. 8 Ун çумĕнчен
аран-аран иртkelесе кайса эпир Ласея хули
çывăхĕнчи Аван Чарăну ятлă пĕр вырăна çитрĕмĕр.
9 Анчах эпир нумай вăхăт çухатрăмăр: типĕ
тытмалли кунсем те иртнĕччĕ ĕнтĕ. Ку вăхăтра
тинĕсе тухма хăрушши çинчен Павел асăрхаттарчĕ.
10 «Эй, халăх! Малалла ишме питĕ йывăр пуласса
эпĕ пĕлетĕп. Тиенĕ япаласемпе карапа çеç мар,
хамăра та пысăк инкек кĕтме пултарать», – терĕ
вăл. 11 Анчах та çĕрпӳ, капитанпа карап хуçине
шанса, Павел асăрхаттарнине итлемерĕ. 12 Ку
чарăну хĕл каçма юрăхсăр пулнă пирки
ытларахăшĕ малалла ишме сĕнчĕç, çитме май
пулсан Финикра хĕл каçас терĕç. Крит утравĕ
çумĕнчи çак чарăну кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен тата
çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен вĕрекен çил çинче ларать.

### Тинĕсри çил-тăвăл

13 Кăнтăр енчен çил вĕре пуçласан тин матроссем,
кĕтни аранах çитрĕ тесе, çула тухрĕç те Крит
çыранĕ çумĕпе ишсе пычĕç. 14 Анчах нумаях та
вăхăт иртмерĕ, Крит енчен тăвăллă çил,
эвроклидон текенскер, вĕрме пуçларĕ. 15 Çил
карапа тыткăнларĕ те пире хумсем çийĕн юхтарса

çӳрерĕ. 16 Клавда ятлă пĕр пĕчĕк утрав патне пырса
лексен, эпир карап çумĕнчи çăлăнмалли кимме
аран-аран тытса чартăмăр. 17 Ăна вĕренсемпе
çĕклесе илтĕмĕр те карапа çирĕплетсе çыхма
пуçларăмăр. Унтан, ăшăх вырăнсене ларасран
хăраса, парăса антартăмăр. Çапла эпир хумсен
тыткăнне лекрĕмĕр. 18 Тепĕр кунне вара, тăвăл питĕ
хытă лăсканăран, тиенĕ япаласене тинĕсе ывăта
пуçларĕç. 19 Виççĕмĕш кунне карап хатĕр-
хĕтĕрĕсене хамăр аллăмăрпах тинĕсе персе
пĕтертĕмĕр. 20 Темиçе кун хушши çапла хĕвел те,
çăлтăрсем те курăнмарĕç, çил-тăвăл кăна чарăна
пĕлми алхасрĕ. Юлашкинчен вара пирĕн çăлăнас
шанчăк та пĕтрĕ.
21 Çынсем чылайранпа çименччĕ ĕнтĕ. Вара
Павел тăчĕ те çапла каларĕ: «Эй, халăх! Сирĕн ман
сăмахăма итлесе Критран тухмалла марччĕ. Итленĕ
пулсан çакнашкал терт-нушана та курман пулăттăр.
22 Анчах та халĕ сире хăюллăрах пулма тархаслатăп.
Карапĕ пĕтĕ, эсир пурте хăтăлăр. 23 Мĕншĕн тесен
мана кĕçĕр чун-чĕремпе Ăна çес парăнса, Уншăн
çес ĕçлесе тăракан Туррăмăн ангелĕ курăнчĕ.
24 „Павел, ан хăра, – терĕ çав ангел. – Санăн
император умне тăмалла, çавăнпа Турă, сана
хĕрхенсе, карап çинчисене пурне те хăтарĕ“.
25 Çавăнпа та, арçын пек пулса, хастарланăр! Йăлтах
Турă каланă пек пуласса эпĕ ĕненетĕп. Вăл каланă
тăрăх, 26 пирĕн пĕр утрав çине тухса ӳкмелле пулĕ».
27 Çапла Адриатика тинĕсĕнче хумсен тыткăнне
лекни икĕ эрне иртрĕ. Çур çĕр тĕлĕнче матроссем
пирĕн карап типĕ çĕр патнелле çывхарнине туя
пуçларĕç. 28 Унтан вĕсем тинĕс тарăнăшне виçсе
пăхрĕç те вăл çирĕм хăлаçа яхăн анчах пулнине
палăртрĕç. Тепĕртакран каллех виçсе пăхрĕç:
тарăнăшĕ вун пилĕк хăлаç кăна иккен. 29 Чул
хысакĕсене пырса çапăнасран хăраса, карап
хысĕнчен тăватă якорь пăрахрĕç. Вара тул
çутăласса кĕте пуçларăмăр. 30 Матроссем тарма
шухăш тытнă пулнă. Карап пуçĕнчен якорь ярам
пек туса, вĕсем тинĕсе çăлăнмалли кимме антара
пуçланă иккен. 31 Çĕрпӳпе салтаксене Павел çапла
каларĕ: «Кусем карап çинчех юлмасан, эсир
çăлăнаймăр». 32 Вара салтаксем çăлăнмалли кимме
çыхнă вĕренсене тытрĕç те касса ячĕç, кимми
тинĕсе ӳкрĕ.
33 Тул çутăлас умĕн Павел пурне те апат çиме
ӳкĕтле пуçларĕ: «Çырана тухасса кĕтсе эсир вун
тăватă кун хушши ĕнтĕ çинĕ-çимен пурăнатăр.
34 Эпĕ сире хистесех çиме ыйтатăп, çисессĕн
çăлăнма çăмăлрах пулĕ. Сирĕнтен пĕрин те пуç
çинчи çӳç пĕрчи те пĕтмĕ». 35 Çакна каласан вăл
çăкăр илчĕ те, пурин умĕнчех Турра тав туса, хуçса
çие пуçларĕ. 36 Тинех çынсен кăмăлĕсем çĕкленчĕç,
вара пурте апатланчĕç. 37 Карап çинче эпир пурĕ ик
çĕр çитмĕл улттăннччĕ. 38 Çисе тăрансан, карап
çăмăллантăр тесе, çынсем юлнă тулла та тинĕсе
ячĕç.

## Карап арканни

39 Тул çутăлчĕ. Чылай сăнарĕç пулин те, матроссем
хамăр хăш тĕлтине калаймарĕç. Вĕсем пĕр сĕвек
çыранлă тинĕс пырне асăрхарĕç, май пулсан,
çавăнта караппа пырса чарăнма шут тытрĕç.
40 Вара вĕсем якорьсене çĕклесе, рульсене
çыхнисене салтса, пĕчĕк парăса çиле май
карăнтарса карапа çыраналла тытрĕç.
41 Тепĕртакран карап пĕр хăйăр сăмсах тĕлне пулчĕ
те ăшăха лекрĕ: карап пуçĕ лакса ларчĕ, хыçне хум
çапса арката пуçларĕ. 42 Тĕрме çыннисем ишсе
тарасран хăраса, салтаксем вĕсене вĕлерме те шут
тытрĕç. 43 Анчах та çĕрпӳ, Павела çăлса хăварас
тесе, вĕсене чарчĕ. Вăл ишме пĕлекенсене шыва
малтан сиксе çырана тухма хушрĕ. 44 Ыттисене вара
хăмасенчен е карап çĕмрĕкĕсенчен тыткаласа
хăтăлма каларĕ. Çапла майпа пурте тип çĕр çине
тухса çăлăнчĕç.

## Мелит утравĕ çинче

28 Тинĕс тыткăнĕнчен хăтăлса тухсан эпир ку
утрав Мелит ятлă иккенне пĕлтĕмĕр.
2 Вырăнти халăх пире питĕ ăшшăн йышăнчĕ. Çумăр
çуса тăнăран, сивĕ пулнăран вĕсем кăвайт хучĕç,
пире пурне те хăйсем патне чĕнчĕç. 3 Çатрака пухса
тултарнă Павел кăвайт хурса ларатчĕ. Сасартăк
çунакан кăвайт ăшĕнчен, вĕри вута тӳсеймесĕр,
çĕлен шуса тухрĕ те Павел аллинчен çакăнса ларчĕ.
4 Утрав çинче пурăнакансем, Павел аллинчен çĕлен
çакăнса тăнине курсан, пĕр-пĕринпе çапла калаçа
пуçларĕç: «Ахăртнех, ку этем çын вĕлернĕ пулĕ.
Курăр-ха, тинĕсре çăлăннăскере Турă айăплавĕ
çитрĕ пуль». 5 Анчах та Павел çĕлене силлесе вута
ывăтрĕ, хăй вара нимĕн чухлĕ те сиенленмен
иккен. 6 Утрав çинчисем Павел шыçăнса каясса е
сасартăк ӳксе вилессе кĕтрĕç. Кĕтсен-кĕтсен, вĕсем
Павела нимĕнле сиен те пулманнине курчĕç. Вара
çак ют халăх çыннисем, хăйсен малтанхи шухăшне
улăштарса, Павела турă вырăнне хура пуçларĕç.
7 Çавăнтан инçех те мар утрав пуçлăхĕн, Публий
ятлăскерĕн, хуçалăхĕ пурччĕ. Вăл пире хапăлласа
йышăнчĕ, виçĕ кун хушши мĕн пур кăмăлтан хăна
турĕ. 8 Ашшĕ унăн сив чирпе тата юнлă варвиттипе
аптăраса вырăнпах выртатчĕ. Павел вара Публий
ашшĕ выртакан пӳлĕме кĕчĕ те, кĕлтуса, ун çине
аллине хурса, сыватрĕ. 9 Çакăн хыççăн утрав çинчи
ытти чирлĕ çынсем те Павел патне пыра пуçларĕç.
Павел вĕсене те сыватрĕ. 10 Кунта пире питĕ лайăх
пăхса усрарĕç, çул çине мĕн кирлине те пĕтĕмпех
парса ячĕç.

## Рима кайни

11 Тепĕр виçĕ уйăхран эпир çак утрав çинчех хĕл
каçнă „Диоскуры“ ятлă Александрия карапĕ çине
ларса тинĕсе тухрăмăр. 12 Унтан Сиракузăна
çитрĕмĕр те çав хулара виçĕ кун пурăнтăмăр.

13 Унтан тухсан Ригие ишсе çитрĕмĕр. Тепĕр
кунтанах кăнтăр çилĕ вĕрме пуçларĕ, çавăнпа эпир
иккĕмĕш куннех Путеола çитсе ӳкрĕмĕр. 14 Унта
эпир ĕненекен тăвансене тĕл пултăмăр, вĕсем пире
хăйсем патĕнче эрнелĕхе юлма ӳкĕте кĕртрĕç. Вара
тин эпир Рима кайма тухрăмăр. 15 Эпир пырасса
пĕлнĕ Римри тăвансем Аппий тӳремĕ текен тата
Виçĕ Хăна çурчĕ текен вырăнсенче пире кĕтсе илме
тухса тăнăччĕ. Вĕсене курсан Павел Турра тав турĕ
те хавхалансах кайрĕ. 16 Рима çитсен çĕрпӳ тĕрме
çыннисене çар пуçĕн аллине пачĕ, Павела вара,
хăйне хураллакан салтакпа пĕрле, ыттисенчен
уйрăммăн пурăнма ирĕк пачĕ.

### Павел Римра вĕрентни

17 Тепĕр виçĕ кунран Павел Римра пурăнакан
иудейсен ятлă-сумлă çыннисене чĕнтерчĕ. Пурте
пухăнса çитсессĕн вĕсене вăл çапла каларĕ: «Эй,
тăван çыннăмăрсем! Эпĕ халăхăма хирĕçле, мăн
асаттесен йăлисене хирĕçле нимĕнле усал ĕç те
туман. Çапах мана Иерусалимра тытса сăнчăрларĕç
те Рим çыннисен аллине пачĕç. 18 Вĕлерме
нимĕнле айăп та тупайман пирки вĕсем мана суд
тунă хыççăн ирĕке ярасшăнччĕ. 19 Анчах та
иудейсем хирĕç тăчĕç, çавăнпа манăн император
судне ыйтма лекрĕ. Çакна эпĕ хамăн халăхăма
мĕншĕн те пулин айăплас тĕллевпе тумарăм.
20 Чĕнтерессе те эпĕ сире çав сăлтавпах чĕнтертĕм,
сирĕнпе курса калаçас терĕм. Мĕншĕн тесен мана
хамăр кĕтекен Израиль шанчăкĕшĕн çак сăнчăрпа
сăнчăрларĕç». 21 Итлекенсем вара ăна çапла
каларĕç: «Эпир Иудейăран сан çинчен çырнă
нимĕнле çыру таврашĕ те илмен. Ĕненекен
тăвансенчен пĕри те килсе сан çинчен пире
хыпарламан, усал сăмах пĕлтермен. 22 Ĕнтĕ пирĕн
çак вĕрентӳ пирки эсĕ ху мĕн шухăшланине пĕлес
килет, мĕншĕн тесен вăл вĕрентӳ пирки таçта та
тавлашнине эпир пĕлетпĕр».
23 Вара вĕсем Павелпа хăçан тĕл пуласси пирки
калаçса татăлнă. Палăртнă кун çитсен ун патне хăна
çуртне вĕсем питĕ нумаййăн пынă. Павел вĕсене
иртен пуçласа каçченех Турă Патшалăхĕ çинчен
вĕрентнĕ. Хăйĕн сăмахĕсене вăл Моисей
саккунĕнче тата пророксен кĕнекисенче Иисус
çинчен пĕлтернĕ вырăнсемпе çирĕплетсе панă.
24 Хăшĕ-пĕрисене вăл ӳкĕте кĕртнĕ, хăшĕсем вара
ĕненмен. 25 Вĕсем пĕр-пĕринпе тавлашсах кайнă,
Павелăн çак сăмахĕсене илтсен вара пĕрин хыççăн
тепри туха-туха кайма тытăннă. Павел çапла каланă
пулнă: «Мăн асаттемĕрсене Святой Сывлăш Исаия
пророк сăмахĕсемпе питĕ аван каланă: 26 „Çак
халăха çапла кайса кала: эсир хăлхапа илтсен те
ăнланаймăр, куçăрсемпе пăхсан та кураймăр.
27 Мĕншĕн тесен çак çынсен чун-чĕри хытса ларнă,
хăлхисем те аран илтеççĕ, куçĕсем те хупă. Ĕнтĕ
вĕсен куçĕ курмасть, хăлхи илтмест, чун-чĕри
туймасть, çавăнпа та вĕсем, Мана сываттарас тесе,
Ман енне çавăрăнмаççĕ“. 28 Çапла ĕнтĕ пĕлсех
тăрăр: Туррăн çăлăнăçне урăх халăхсене панă,
итлекенĕсем те вĕсемех пулĕç». 29 Çакна илтсен
иудейсем пĕр-пĕринпе тавлаша-тавлаша тухса
кайнă .

### Юлашкинчен калани

30 Çапла Павел Римра тата икĕ çула яхăн пулнă.
Унта вăл çав хăна çуртĕнчех пурăннă, хăйĕн патне
пыракансене пурне те хапăл тунă. 31 Павел Турă
Патшалăхĕ çинчен, Иисус Христос Хуçамăр çинчен
хăюллăн та пĕр чăрмавсăр вĕрентнĕ.

# Римсем патне

### Саламлани

1 Иисус Христос чуринчен Павелран. Турă
ирĕкĕпе мана апостол пулма чĕнсе илнĕ,
Туррăн Ырă Хыпарне пĕлтермешкĕн суйланă. 2 Çав
Ырă Хыпара таса çырусенче Турă Хăйĕн
пророкĕсем урлă малтанах шантарнă. 3 Ырă Хыпар
Турă Ывăлĕ çинчен пĕлтерет. Ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен Вăл
Давид йăхĕнчен çуралнă. 4 Сăваплă чун-чĕм
тĕлĕшĕнчен Вăл Туррăн хăватлă Ывăлĕ пулни вара
вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă тăрăх уççăнах палăрнă. Вăл
– Иисус Христос, пирĕн Хуçамăр. 5 Турра пĕлмен
мĕн пур халăхсене Иисус ятне ĕнентерме, çав
ĕненĕве чунтан парăнтарма пире Ун урлă тивлет
те, апостол тивĕçне те панă. 6 Эсир те, Иисус
Христос чĕнсе илнисем, Турра пĕлмен çав халăхсем
хушшинче пурăнатăр. 7 Сире Турă юратать, Вăл
сире сăваплисем пулма чĕнсе илнĕ. Сире, Римри
мĕн пур ĕненекенсене, Атте Туррăмăрпа Иисус
Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăçлăх пултăр.

### Павел Рима çитсе курма ĕмĕтленни

8 Сирĕн ĕненĕвĕр пирки тĕнчипех пĕлеççĕ ĕнтĕ.
Çавăнпа та чи малтанах сирĕншĕн пуриншĕн те
Иисус Христос урлă Туррăма тав тăватăп. 9 Эпĕ Унăн
Ывăлĕ çинчен Ырă Хыпар сарса Турăшăн чун-
чĕререн тăрăшатăп. Сирĕн çинчен тăтăшах
шухăшланине Турă курса-пĕлсе тăрать. 10 Хăçан та
пулин сирĕн патăра çитсе курмашкăн ирĕк
патăрччĕ тесе кĕллĕмсенче тăтăшах Турра
йăлăнатăп. 11 Манăн сирĕнпе курнăçса Турă
Сывлăшĕн пархатарĕпе сирĕн ĕненĕвĕре
çирĕплетесчĕ. 12 Тĕл пулсассăн эпир пĕрлехи ĕненӳ
вăйĕпе хавхаланăттăмăр, пĕр-пĕриншĕн тĕрек
пулăттăмăр. 13 Тăвансем! Пĕлсемĕр: эпĕ сирĕн
патăра темиçе хут та пыма пуçтарăнсаттăм, анчах
та паян кунччченех чăрмавсем тупăнса пычĕç. Эпĕ
сирĕн патăрта та, Турра пĕлмен ытти халăхсем
хушшинчи пекех, ĕненӳшĕн тунă ĕçĕмсен уссине
курасшăнччĕ. 14 Манăн грексемпе варварсене те,
ăслисемпе айваннисене те вĕрентес тивĕçĕм пур.
15 Çапла вара, хама илес пулсассăн, эпĕ сире те,
Римра пурăнакансене, Ырă Хыпар пĕлтермешкĕн
хатĕр. 16 Эпĕ Христосăн Ырă Хыпарне вĕрентме
вăтанмастăп, мĕншĕн тесен Ырă Хыпар – мĕн пур
ĕненекенсене çăлăнăç кӳмелли Турă вăй-хăвачĕ.
Çав çăлăнăçа малтанах иудейсен илмелле, унтан –
ытти халăхсен. 17 Хытăрах та хытăрах ĕненсе
пынăçемĕн Ырă Хыпарта Турă тӳрĕлĕхĕ уçăлсах
пырать. Ун пирки Çырнинче çапла каланă: «Тӳрĕ
çын ĕненӳпе чĕрĕ пулĕ».

### Этемлĕхĕн айăпĕ

18 Турра хисеплеменни тата этем йĕркесĕрлĕхĕ
чăнлăха пусарса тăрать. Унашкал çынсем çине
тӳперен Турă çилли анĕ. 19 Турă çинчен мĕн
пĕлмеллине вĕсем пĕлеççĕ, çакна Турă Хăй вĕсене
уçса панă. 20 Унăн курăнми ĕмĕрхи хăвачĕпе
Турăлăхĕ тĕнчене пултарнăранпах палăрать, ăна
Вăл пултарнă тĕнчене сăнасанах ăнланса илме
пулать. Çавăнпа та усал туса пурăнакансене каçару
пулас çук. 21 Турă çинчен пĕлеççĕ пулин те, вĕсем
Ăна Турра мухтанă пек мухтамаççĕ, тав тумаççĕ. Ун
вырăнне вĕсен шухăшĕсем пушă вĕрентӳсем тавра
çавăрăнаççĕ, вĕсен туйми чĕрисем тĕттĕмленнĕ.
22 Вĕсем хăйсене ăсла хурсах ухмаха тухнă. 23 Вĕсем
вилĕмсĕр Туррăн мухтавне вилĕмлĕ этем, вĕçен
кайăк, чĕр чун, çĕлен-калта сăнарĕпе ылмаштарнă,
çав кĕлеткесене пуççапаççĕ. 24 Çавăнпа та Турă
вĕсене ирсĕррипех хăварнă: çылăхлă шухăш-кăмăл
хыççăн кайса вĕсем хăйсен ӳт-пĕвне хăйсемех
чыссăрлатаççĕ. 25 Вĕсем Турă чăнлăхне суяпа
ылмаштарнă, Пултаракан Турра пуççапас вырăнне
пултарнă япаласене пуççапса чӳклеççĕ. Пултаракан
ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă пултăр, аминь. 26 Çавăнпа та
Турă вĕсене намăслăх тыткăнне панă: вĕсен
хĕрарăмĕсем арлă-арăмлă пурăнас вырăнне пĕр-
пĕринпе асса пурăнаççĕ. 27 Вĕсен арçынĕсем те
арлă-арăмлă пурăнас вырăнне пĕр-пĕринпе,
арçынпа арçын, асса пурăнаççĕ, намăс ĕç тăваççĕ.
Çапла майпа вĕсем хăйсен пăсăклăхĕшĕн хăйсемех
тивĕçлĕ тавăру илеççĕ. 28 Вĕсем Турра ĕненес тесе
тăрăшман пирки Турă вĕсене пăсăк ăс тыткăнне
панă. Пăсăк ăса пула вĕсем тума юраман ĕçсем
тăваççĕ. 29 Вĕсем йĕркесĕр, аскăн, чее, çăткăн,
çилĕллĕ, кĕвĕç, çын вĕлерекен, чăркăш, ултавлă,
хаяр кăмăллă, 30 усал чĕлхеллĕ, элекçĕ пулаççĕ.
Вĕсем Турра кураймаççĕ, çынсене кӳрентереççĕ,
мухтанчăк, мăнкăмăллă, тем тĕрлĕ усал тума та
ăста, ашшĕ-амăшне итлемеççĕ. 31 Вĕсем ăссăрла
хăтланаççĕ, шанчăксăр, никама та юратмаççĕ,
ниепле те çураçмаççĕ, хĕрхенме пĕлмеççĕ.
32 Çакнашкал хăтланса пурăнакансем Туррăн тӳрĕ
сучĕпе вилĕме тивĕçлине вĕсем пĕлеççĕ, анчах çав
ĕçсене тăваççĕ кăна мар, тăвакансене те ырлаççĕ.

### Туррӑн тӗрӗс сучӗ

2 Эй, этем! Ыттисене айӑплатӑн пулсан, ху та
тӳрре тухаяс ҫук. Эсӗ ыттисене мӗнле судпа
айӑплатӑн, ху та ҫав судпах айӑпланатӑн. Мӗншӗн
тесен, ху та ҫавнах тӑватӑн пулин те, ыттисене
айӑплатӑн. 2 Унашкал хӑтланакансене Турӑ тӗрӗс
суд тӑвасса эпир пӗлетпӗр-ҫке. 3 Эй, этем! Эсӗ
унашкал хӑтланакансене айӑпласа, ху та
ҫавнашкалах хӑтланса пурӑнса, Турӑ судӗнчен
тарса юлӑп тетӗн-им? 4 Тен, эсӗ Туррӑн аслӑ
кӑмӑлне, йӑвашлӑхне тата нумай тӳсӗмлӗхне ним
вырӑнне те хумастӑн? Турӑ кӑмӑлӗ сана
ӳкӗнтересшӗн пулнине те ӑнланмастӑн-и? 5 Анчах
та эсӗ кутӑн, ӳкӗнес теместӗн, ху валли хӑвах ҫилӗ
пуҫтаратӑн. Турӑ ҫиллин кунӗнче Унӑн тӳрӗ судне
эсӗ курӑн-ха. 6 Турӑ кашнинех ӗҫӗсене кура тавӑрса
парӗ: 7 яланхи ырӑ ӗҫпе мухтав, хисеп,
вилӗмсӗрлӗх илме тӑрӑшакансене – ӗмӗрлӗх
пурӑнӑҫ; 8 кутӑннисене, чӑнлӑха пӑхӑнас темесӗр
усала парӑннисене – хаярлӑхпа ҫилӗ. 9 Усал тӑвакан
кирек епле этеме те – чи малтан иудейя, унтан ытти
халӑх ҫыннине – хуйхӑпа асап пулӗ! 10 Ырӑ тӑвакан
кирек епле этеме те – малтанах иудейя, унтан ытти
халӑх ҫыннине – чыс та мухтав, канӑҫлӑх пулӗ!
11 Турӑ ҫынна кам пулнине кура хакламасть.
12 Моисей саккунне пӗлмен халӑх ҫыннисен,
ҫылӑха кӗрсессӗн, саккун тулашӗнчех пӗтмелле
пулӗ. Моисей саккунне пӗлекенсен вара, ҫылӑха
кӗрсессӗн, саккунпа айӑпланмалла пулӗ.
13 (Мӗншӗн тесен Турӑ умӗнче саккуна илтнисем
мар, саккуна пурнӑҫлакансем тӳрре тухӗҫ.
14 Моисей саккунӗсӗр урӑх халӑх ҫыннисем чун-
чӗре туртӑмӗпе саккун хушнӑ пек тӑваҫҫӗ пулсан,
эппин ҫав саккун вӗсен чун-чӗринче пур. 15 Ҫапла
вара, саккун хушнисене вӗсем чун-чӗрипе туяҫҫӗ.
Ҫакна вӗсен чунӗ тата шухӑшлавӗ ҫирӗплетет:
вӗсем хӑйсене пӗрре айӑплаҫҫӗ, тепре тӳрре
кӑлараҫҫӗ.) 16 Кама мӗн тавӑрса парасси вара, эпӗ
вӗрентекен Ырӑ Хыпар тӑрӑх, суд кунӗнче палӑрӗ.
Ун чухне Турӑ Иисус Христос урлӑ ҫынсен вӑрттӑн
ӗҫӗсене суд тӑвӗ.

### Иудейсем тата саккун

17 Акӑ, эсӗ хӑвна иудей тетӗн, саккуна шанса хӑвна
лӑплантаратӑн, Турӑпа мухтанатӑн. 18 Эсӗ Турӑ
ирӗкне те пӗлетӗн, саккунран вӗренсе мӗн
лайӑххине те ӑнкаратӑн. 19 Пӗлӳпе чӑнлӑх –
саккунра тетӗн эсӗ. Саккуна пӗлнӗрен эсӗ хӑвна
суккӑрсене ҫавӑтса пыракан, тӗттӗмрисене ҫутӑ
паракан, вӗренмен ҫынсене вӗрентекен,
ӑссӑррисене ӑс паракан тесе шухӑшлатӑн. 21 Епле-
ха эппин эсӗ, ыттисене вӗрентсе, хӑвна ху
вӗрентместӗн? 22 «Ан вӑрла», – тесе вӗрентетӗн, ху
мӗншӗн вӑрлатӑн? «Мӑшӑрсен пӗр-пӗрне
улталамалла мар», – тесе вӗрентетӗн, ху мӗншӗн
улталатӑн? Суя турӑ кӗлеткисенчен йӗрӗнетӗн,
анчах ҫав кӗлеткесем ларакан керменсене ҫаратма
мӗншӗн йӗрӗнместӗн? 23 Эсӗ, саккунпа
мухтанаканскер, мӗншӗн саккуна пӑсса Турӑ ятне
хисепрен кӑларатӑн? 24 Ҫырнинче каланӑ пек,
сирӗн пирки урӑх халӑх ҫыннисем Турӑ ятне
хурлаҫҫӗ. 25 Ӳт кастарни саккун хушнисене
пурнӑҫласан ҫеҫ пӗлтерӗшлӗ. Енчен те эсӗ саккуна
пӑхӑнмастӑн пулсан, ӳт кастарнинчен ним усси те
ҫук. 26 Ҫапла вара, ӳт кастарман ҫын саккун
хушнине пурнӑҫлать пулсан, ӳт кастарманнине ӳт
кастарни шутнех кӗртмӗҫ-и? 27 Санӑн ҫырнӑ саккун
пур, эсӗ ӳт кастарнӑ, ҫапах та саккуна пӑсатӑн. Ӗнтӗ
сана саккун хушнине пурнӑҫлакан, ӳт кастарман
ҫынах айӑпламӗ-и? 28 Мӗншӗн тесен тулашӗнчен
иудей пек курӑннипех чӑн-чӑн иудей пулаймӑн,
тулашӗнчен ӳт кастарни те чӑн-чӑн ӳт кастарниех
мар. 29 Кам чунӗпе иудей, ҫав чӑн-чӑн иудей.
Ячӗшӗн мар, чун-чӗре хушнипе ӳт кастарни ҫеҫ
чӑн-чӑн ӳт кастарни пулать. Ун пек ҫынна этем
мухтавӗ мар, Турӑ мухтавӗ пулӗ.
3 Эппин иудейсем ытти халӑхсенчен мӗнпе
чаплӑрах-ха, ӳт кастарнинчен мӗн усси пур?
2 Иудейсем пур енӗпе те ытти халӑхсенчен
маларах. Уйрӑммӑнах ҫакӑ вӗсене Турӑ сӑмахне
шанса панинчен курӑнать. 3 Енчен те вӗсенчен
хӑшӗ-пӗри Турӑшӑн шанчӑксӑр пулсан? Нивушлӗ
вӗсен шанчӑксӑрлӑхӗ Туррӑн шанчӑклӑхне
пӑрахӑҫлать? 4 Ҫук. Пӑрахӑҫламасть. Турӑ чӑн,
кирек епле этем те вара ултавлӑ. Ҫырнинче ҫапла
каланӑ: «Эсӗ чӑннине калатӑн, ҫавӑнпа Хӑвна
айӑплакансене Эсӗ ҫӗнтерӗн». 5 Этемле шухӑшласа
калатӑп: пирӗн йӗркесӗрлӗх Туррӑн тӳрӗлӗхне
уҫҫӑнрах кӑтартса парать пулсан, Турӑ пире
айӑпласа тӗрӗс мар тӑвать теме пултаратпӑр-и
эпир? 6 Паллах, ҫук! Енчен те Турӑ пире те айӑплама
пултараймасан, тӗнчене Вӑл епле суд тума
пултарӗ? 7 Эсӗ ҫапла хирӗҫлесе калама пултаратӑн:
«Манӑн суялӑх Туррӑн чӑнлӑхне палӑртса Ӑна
мухтавлӑрах тӑвать пулсан, эппин мӗншӗн мана
ҫылӑхлӑ ҫынна айӑпланӑ пек айӑпламалла? 8 Тен,
ырри пултӑр тесен, усал тумалла?» Хӑш-пӗр
элекҫӗсем пире шӑпах ҫапла вӗрентетӗр теҫҫӗ, усал
сӑмах сараҫҫӗ. Вӗсене тӗрӗс суд пултӑрах.

### Турӑ умӗнче пурте айӑплӑ

9 Ҫапла вара, эпир, иудейсем, ытти халӑхсенчен
маларах-и? Ҫук. Мӗншӗн тесен иудейсем те, ытти
халӑхсем те ҫылӑхлӑ терӗмӗр ӗнтӗ. 10 Ҫырнинче
каланӑ пек: «Тӳрӗ пурӑнакан пӗри те ҫук. 11 Турра
ӑнланас текен, ӑнтӑлса шырас текен пӗри те ҫук.
12 Пурте тӗрӗс ҫултан пӑрӑнса кайнӑ, пурте
юрӑхсӑр; ырӑ тӑвакан ҫук, пӗрре те ҫук». 13 «Вӗсен
карланки – уҫӑ тупӑк; чӗлхи – ултавлӑ, тути-
ҫӑварӗнче – ҫӗлен наркӑмӑшӗ». 14 «Ҫӑварӗ вӗсен
усаллӑхпа тата вӗчӗхӳпе тулнӑ». 15 «Урисем вӗсен
юн юхтармашкӑн васкаҫҫӗ; 16 вӗсем иртекен ҫул
ҫинче – арканчӑкпа инкек-синкек; 17 канӑҫлӑх ҫулне
вӗсем пӗлмеҫҫӗ». 18 «Вӗсен куҫӗнче Турӑран хӑрани

çук». 19 Саккунра мĕн калани саккуна
пăхăнакансене пурне те пырса лекет. Çавăнпа та
пурин çăварĕ те хупланать, Турă умĕнче пĕтĕм
тĕнче айăплă пулса тăрать. Çакна эпир пĕлетпĕр.
20 Саккуна пурнăçланипе кăна пĕр çын та Унăн
умĕнче тӳрре тухаймĕ. Мĕншĕн тесен саккун урлă
çылăх мĕнне пĕлесси çеç килет.

## Ĕненӳ урлă килекен тӳрĕлĕх

21 Халĕ вара саккунран килмен Турă тӳрĕлĕхĕ
уçăлчĕ. Ун çинчен саккун та, пророксем те
пĕлтернĕ. 22 Иисус Христоса ĕненни урлă килекен
Турă тӳрĕлĕхне мĕн пур ĕненекен илме пултарать,
мĕншĕн тесен пур çын та пĕр, 23 пурте çылăха кĕнĕ,
Турă мухтавне пĕри те тивĕçлĕ мар. 24 Анчах та Турă
Хăйĕн ырăлăхĕпе пире пурне те тӳлевсĕрех
тӳрĕлĕхне парать, мĕншĕн тесен пире Христос
Иисус тӳлесе илнĕ. 25 Христоса ĕненекенсем пурте
Унăн Юнĕпе тасалчăр тесе, Турă Унран
çырлахтару парни тунă. Çапла майпа Турă Хăйĕн
тӳрĕлĕхне палăртать: Вăл малтан та çынсен
çылăхĕсене нумай чăтнă, халĕ те тӳрĕлĕхлĕ. Иисуса
ĕненекенсене Турă тӳрре кăларĕ.
27 Пирĕн мĕнпе мухтанмалла-ха? Мухтанмалли
нимĕн те çук. Мĕнле саккунпа мухтанмалла? Саккун
хушнине туса-и? Паллах, çук. Саккун хушнине
тунипе мар, ĕненӳпе кăна мухтанма пулать.
28 Мĕншĕн тесен этем саккуна пăхăннипе мар,
ĕненӳпе тӳрре тухасса эпир çирĕп шанатпăр. 29 Турă
Вăл иудейсен Турри кăна-и? Е урăх халăхсен Турри
те? Паллах, урăх халăхсен те. 30 Мĕншĕн тесен Турă
пĕрре. Вăл ӳт кастарнăшăн е кастарманшăн мар,
ĕненнĕшĕн тӳрре кăларать. 31 Капла эпир саккуна
ĕненӳпе пăрахăçламастпăр-и? Паллах, çук. Эпир
саккуна ĕненӳпе çирĕплететпĕр.

## Авраам тĕслĕхĕ

4 Хамăр мăн асаттемĕр Авраам çинчен мĕн
калама пулать? Хăй тăрăшнипе вăл мĕнле
тивĕçлĕ ĕç тунă-ха? 2 Енчен те Авраам ĕçĕсемпе
тӳрре тухнă пулсан, вăл Турă умĕнче мар, çынсем
умĕнче мухтава тивĕç. 3 Çырнинче мĕн каланă-ха?
«Авраам Турра ĕненнĕ, Турă çакна тӳрĕлĕх шутне
кĕртнĕ». 4 Ĕçлекене тӳлени вăл хĕрхенсе пани мар,
тивĕçлине тавăрса пани. 5 Турă Хăйне
хисеплеменнисене те тӳрре кăларма пултарать.
Енчен те çын хăйĕн ĕçне мар, Турра шанать пулсан,
Турă унăн ĕненĕвне тӳрĕлĕх шутне кĕртет. 6 Ĕçне
шута илмесĕрех Турă тӳрре кăларнă çынна Давид
та телейлĕ тенĕ. 7 «Йĕркесĕр ĕçĕсене каçарттарнă
çын, çылăхĕсене тасаттарнă çын телейлĕ. 8 Çылăхне
Хуçа Турă шута илмен çын телейлĕ». 9 Çак телее кам
илейĕ? Ӳт кастарни е ӳт кастарманни? «Авраам
Турра ĕненнĕ, Турă çакна тӳрĕлĕх шутне кĕртнĕ», –
тетпĕр эпир. 10 Авраам хăçан тӳрре тухнă? Ӳт
кастариччен е ӳт кастарнă хыççăн? Ӳт кастарнă
хыççăн мар, ӳт кастариччен. 11 Ӳт кастарнин
паллине те вăл ĕненӳ урлă илнĕ тӳрĕлĕх палли пек
илнĕ. Вăл ӳт кастарман чухнех Турра ĕненнĕ. Çапла
вара Авраам, ытти халăхсем те тӳрре тухма
пултарччăр тесе, ӳт кастарман мĕн пур
ĕненекенсен ашшĕ пулса тăнă. 12 Ӳт кастарнисем те
çав ĕненӳ çулĕпех пыраççĕ пулсан – Авраам вĕсен
ашшĕ те пулса тăрать. Пирĕн аттемĕр Авраам та ӳт
кастариччен ĕненнĕ.

## Сăмах парса шантарни ĕненӳ урлă пурнăçланать

13 Авраама тата унăн йăхне тĕнче еткерçисем
пулмашкăн саккун урлă мар, ĕненсе тӳрре
тухнăшăн сăмах парса шантарнă. 14 Саккуна
пăхăннипех еткер илме май пур пулсан, эппин
ĕненӳ усăсăр, Турă Авраама сăмах пани пустуй
пулса тухать. 15 Саккун вара Турă тавăрăвне илсе
килет: саккун çук пулсан, ăна пăсасси те çук.
16 Çапла ĕнтĕ, Хăй шантарнине пурте илме
пултарччăр тесе, ырă кăмăллă Турă ăна ĕненӳшĕн
пама пулнă. Çавăнпа та Турă шантарни Авраам
йăхĕнчисемшĕн пуриншĕн те: саккуна тытса
пыракансемшĕн кăна мар, Авраам ĕненĕвне
йышăнакансемшĕн те. Авраам вара пирĕншĕн
пуриншĕн те аттемĕр. 17 «Эпĕ сана нумай халăхăн
ашшĕ туса хутăм», – тенĕ Çырнинче. Авраам Турра
ĕненнĕ, вăл пирĕншĕн Турă умĕнчи аттемĕр пулса
тăнă. Турă вара вилнисене чĕртсе тăратать, Унăн
ирĕкĕпе ĕнтĕ пулманни пур пулать. 18 Нимĕнле
шанчăк та çук çинчех Авраам Турра шанса ĕненнĕ,
çавăнпа та вăл нумай халăхăн ашшĕ пулса тăнă.
«Санăн йăху çав тери йышлă пулĕ», – тесе каланă-
çке-ха Турă ăна. 19 Манăн, çĕр çулалла çитнĕскерĕн,
ӳт-кĕлеткем типнĕ ĕнтĕ, Саррăн та варĕ типнĕ ĕнтĕ
тесе шухăшламан вăл. Çав шухăшпа ĕненĕвне
хавшатман. 20 Авраам Турă шантарни пирки
иккĕленмен, ĕненмесĕр тăман, Турра мухтаса
çирĕп ĕненнĕ. 21 Турă хăватлă, сăмах панине
пурнăçлĕ тесе шанса тăнă. 22 Çакна Турă тӳрĕлĕх
шутне кĕртнĕ. 23 Тепĕр тесен, Çырнинче „тӳрĕлĕх
шутне кĕртнĕ“ тени пĕр Авраам пирки кăна мар,
24 пирĕн пирки те. Эпир Иисус Христос Хуçамăра
вилĕмрен чĕртсе тăратнă Турра ĕненетпĕр, çакна
тӳрĕлĕх шутне кĕртĕç. 25 Христос пирĕн
çылăхсемшĕн вилнĕ, пире Турă умĕнче тӳрре
кăлармашкăн чĕрĕлсе тăнă.

## Турă юратулăхĕ – пирĕн шанчăк никĕсĕ

5 Çапла ĕнтĕ, ĕненӳпе тӳрре тухсан эпир Иисус
Христос Хуçамăр урлă Турăпа çураçу тупатпăр.
2 Ĕненĕве пула эпир Иисус урлă ырăлăх илтĕмĕр,
çав ырăлăхпа пурăнатпăр; Турă мухтавне те илес
шанчăк пурришĕн савăнатпăр. 3 Уншăн кăна мар,
хамăра хĕсĕрлесе хĕн-хур кăтартнăшăн та
савăнатпăр. Мĕншĕн тесен эпир çакна пĕлетпĕр:
хĕн-хур пире тӳсĕмлĕ тăвать, 4 тӳсĕмлĕх пирĕн
кăмăла çирĕплетет, çирĕплĕхрен шанчăк çуралать.
5 Шанчăк вара улталамасть, мĕншĕн тесен пирĕн

чĕремĕрсем хамăра панă Святой Сывлăш урлă Турă
юратулăхĕпе тулнă. 6 Эпир халсăр чухне Христос
пирĕншĕн, Турра хисеплемен çынсемшĕн,
палăртса хунă вăхăтра вилнĕ. 7 Тӳрĕ пурăнаканшăн
хăйĕн пурăнăçне камах парĕ? Чăн та, хăйне ырă
тăваканшăн, тен, кам та пулин вилме те пултарĕ.
8 Христос вара пирĕншĕн эпир çылăхлă чухнех
вилнĕ. Çапла майпа Турă пире Хăй епле юратнине
кăтартса панă. 9 Çавăнпа халĕ Вăл пире, Хăйĕн
Юнĕпе тӳрре кăларнăскерсене, Турă çиллинчен
çăлса хăваратех. 10 Ĕлĕкрех эпир Турăпа хирĕçсе
пурăннă. Пирĕнпе килĕштерес тесе Турă Хăйĕн
Ывăлне вилĕме панă. Халĕ вара, килĕшӳлĕх тупнă
хыççăн, Вăл пире Хăйĕн Ывăлĕн чĕрĕлĕхĕпе çăлса
хăваратех. 11 Ку анчах мар-ха. Иисус Христос
Хуçамăр пире халĕ Турăпа çураçтарнă. Çавăнпа та,
Иисуса пула, эпир Турăпа мухтанатпăр.

### Адам тата Христос

12 Çапла вара, пĕр çын урлă тĕнчене çылăх килнĕ,
çылăхпа пĕрле – вилĕм. Пĕр çынна пула пурте
вилĕмлĕ пулса тăнă, мĕншĕн тесен пурте çылăха
кĕнĕ. 13 Тĕнчере çылăх Моисей саккунĕччченех
пулнă. Анчах та саккун çук чухне çылăх шута
кĕмест. 14 Вилĕм вара Адамран пуçласа
Моисейччченех хуçаланнă. Адам пек çылăха
кĕменнисене те вилĕм шеллемен. Адам –
пуласлăхра Килессин сăнарĕ. 15 Анчах та Адам
çылăха кĕнине Турă ырăлăхĕ панипе танлаштарма
та çук. Мĕншĕн тесен пĕри çылăха кĕни этемлĕхе
вилмелле тунă. Турă Хăйĕн ырăлăхĕпе пĕр Çын
ырăлăхĕ урлă, Иисус Христос урлă, пани вара –
этемлĕхе çăлмашкăн та ытлашшипех. 16 Турă
панине пĕр çын çылăхĕпе танлаштарма çук. Пĕрин
çылăхĕ суд тата айăплав патне илсе пырать, Турă
ырăлăх пани вара нумай çылăхран хăтарать. 17 Пĕр
çын çылăхĕ урлă вилĕм хуçаланнă пулсан, Туррăн
тулли ырăлăхне тата тӳрĕлĕхне илекен çынсем пĕр
Çын урлă, Иисус Христос урлă, пурăнăçра епле
чаплăрах хуçаланĕç! 18 Пĕри çылăх тунăшăн пурте
айăпа юлнă пулсан, пĕри тӳрĕ ĕç тунăшăн та
пурăнмашкăн пурте тӳрре тухĕç. 19 Çапла вара, пĕр
çын пăхăнманшăн нумайăшĕ çылăхлă пулсан, пĕр
çын пăхăннăшăн та нумайăшĕ тӳрĕлĕхлĕ пулĕç.
20 Саккун каярахпа килнĕ, çавна пула çылăх
нумайланнă. Çылăх нумайлансан вара Турă
ырăлăхĕ татах нумайланнă. 21 Çылăх, вилĕм кӳрсе,
хуçаланнă. Çавнашкалах ырăлăх та, тӳрĕлĕх кӳрсе,
хуçаланĕ, Иисус Христос Хуçамăр урлă ĕмĕрлĕх
пурăнăç парĕ.

### Çылăхшăн эпир – вилĕ

6 Мĕн калар-ха эппин? Ырăлăх нумайлантăр
тесен пирĕн ĕлĕкхиллех çылăха кĕрсе
пурăнмалла-и? Апла мар, паллах. 2 Çылăхшăн эпир
вилĕ: епле тата пирĕн çылăха кĕрсе пурăнас?
3 Çакна та пĕлейместĕр-и? Эпир пурте Христоспа
пĕр пулас тесе тĕне кĕнĕ, эппин Унпа пĕрлех хĕрес
çинче пăталаннă. 4 Ашшĕн мухтавлă хăвачĕпе
Христос епле вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă, пирĕн те
çапла чĕрĕлсе çĕнелнĕ пурăнăçпа пурăнмалла.
Çавăнпа та эпир, тĕне кĕрсе, Христоспа пĕрле
вилнĕ, пире Христоспа пĕрле пытарнă. 5 Эпир Унпа
вилĕмĕнче пĕр пултăмăр пулсан, Унăн
чĕрĕлĕвĕнче те пĕр пулăпăр. 6 Çылăхлă ӳтĕмĕре
пăрахăçлас тесе, хамăрăн текех çылăх чурисем
пулас марччĕ тесе, пирĕнти кивĕ çын Унпа пĕрле
пăталаннине эпир пĕлетпĕр. 7 Мĕншĕн тесен вилни
çылăха кĕресрен хăтăлнă ĕнтĕ. 8 Енчен те эпир
Христоспа пĕрле вилнĕ пулсан, Унпа пĕрле
чĕрĕлĕхлĕ пуласса та ĕненетпĕр. 9 Эпир пĕлетпĕр:
вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христос урăх вилмест.
Вилĕм Унпа текех пуç пулаймасть. 10 Вилессе Вăл,
çылăх тыткăнне пĕтерсе, пĕрре вилнĕ. Пурăнасса
вара Турăшăн пурăнать. 11 Эсир те çаплах, Иисус
Христос Хуçамăрпа пĕр пулса, хăвăра çылăхшăн –
вилĕ, Турăшăн – чĕрĕ тесе шутлăр.
12 Çылăхлă кăмăл чури пулас мар тесен, çылăха
хăвăрпа хуçаланма ан парăр. 13 Сирĕн ӳт-пĕвĕрĕн
нихăш пайĕ те çылăх аллинчи йĕркесĕрлĕх хатĕрĕ
ан пултăр. Ун вырăнне, вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă
çынсем пек пулса, хăвăра Турă аллине парăр.
Сирĕн ӳт-пĕвĕн пур пайĕ те вара тӳрĕлĕх хатĕрĕ
пултăр. 14 Çылăх сирĕнпе тек нихçан та хуçаланма
ан пултартăр, мĕншĕн тесен эсир ĕнтĕ саккун
аллинче мар, Турă ырăлăхĕн аллинче.

### Тӳрĕлĕх чурисем

15 Мĕн тумалла-ха? Эпир саккун аллинче мар, Турă
ырăлăхĕн аллинче тесе, çылăха кĕрсе пурăнмалла-
и? Паллах, апла мар. 16 Эсир пĕлместĕр-им? Камăн
чури пулса пăхăнма килĕшетĕр – çавăн чури
пулатăр та, çавна пăхăнатăр: е вилмешкĕн çылăх
чури пулатăр, е тӳрре тухмашкăн Турра пăхăнатăр.
17 Тавах Турра! Эсир ĕлĕкрех çылăх чурисем пулнă
пулин те, халĕ хăвăр йышăннă вĕрентĕве пĕтĕм
чун-чĕререн парăнтăр. 18 Çылăхран хăтăлса тӳрĕлĕх
чури пулса тăтăр. 19 Ăнланмалла пултăр тесе çакна
эпĕ сире уçăмлăрах каласшăн. Ĕлĕкрех эсир ӳт-
пĕвĕр пайĕсене ирсĕрлĕх тата йĕркесĕрлĕх
чуралăхне усал ĕçсем тумашкăн панă. Çавнашкалах
халĕ вĕсене тӳрĕлĕх чуралăхне таса ĕçсем тума
парăр. 20 Мĕншĕн тесен эсир çылăх чурисем пулнă
чухне сирте тӳрĕлĕх пулман. 21 Ун чухнехи ĕçĕрсем
мĕн пачĕç-ха сире? Халĕ вĕсенчен хăвăр та
вăтанатăр ĕнтĕ. Вĕсем вилĕмпе кăна вĕçленеççĕ.
22 Анчах та халĕ, эсир çылăхран хăтăлса Турă
чурисем пулса тăрсассăн, ырă ĕçĕрсем сире
сăваплăх параççĕ, çав ĕçсемпе эсир ĕмĕрлĕх
пурăнăçлă пулăр. 23 Мĕншĕн тесен çылăхшăн
вилĕмпе тӳлес пулать, Иисус Христосри, хамăр
Хуçамăрти ĕмĕрлĕх пурăнăç вара – Турă парни.

## Мăшăрланупа танлаштарни

7 Эй, тăванăмсем! Этем чĕрĕ чухне кăна саккун
унпа пуç пулнине пĕлместĕр-им? Çакна эпĕ
саккуна пĕлекенсене калатăп. 2 Тĕслĕхрен, качча
кайнă хĕрарăма упăшкапа пурăнасси çинчен
калакан саккун упăшки çумне çыхать. Упăшки
вилсессĕн вара хĕрарăм çав саккунран ирĕклĕ.
3 Çавăнпа та, упăшки чĕрĕ чухнех хĕрарăм
урăххине качча тухсан, ăна мăшăрне улталакан
теççĕ. Анчах та упăшки вилсессĕн хĕрарăм çав
саккунран ирĕклĕ. Тепĕр арçынна качча кайсан та
вăл мăшăрне улталакан шутланмасть. 4 Эй,
тăванăмсем! Эсир те çавнашкалах: хĕрес çинче
пăталаса вĕлернĕ Христос ӳчĕпе пĕрле саккуншăн
вилĕ шутланатăр. Халĕ вара эсир Турра усă
кӳмешкĕн вилĕмрен Чĕрĕлнин пулатăр. 5 Ĕлĕк, ӳт-
пӳшĕн пурăннă чухне, пирĕнпе çылăхлă кăмăл
хуçаланнă, пирĕн саккун хушманнине тăвас килнĕ.
Çапла вара, саккун çылăх шутне кĕртнĕ шухăш-
туйăм пире вилĕм патне илсе кайнă. 6 Анчах та
халĕ, хамăра çыхса тăракан саккуншăн вилĕ чухне,
эпир саккун хушнисенчен ирĕклĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир
саккунри кивĕ сас паллисем хыççăн кайса мар,
çĕнелнĕ чун хавалĕпе Турăшăн ĕçлесе пурăнатпăр.

## Ăшри çылăх

7 Мĕн калар-ха эппин? Саккун хăй çылăхлă-шим?
Паллах, апла мар. Анчах та эпĕ саккуна пĕлмен
пулсассăн çылăх мĕнне те пĕлмен пулăттăм. Саккун
«ан хапсăн» темен пулсан, эпĕ хапсăнни мĕн
иккенне те пĕлмен пулăттăм. 8 Анчах та çылăх, пил-
хушупа сăлтавласах, манра юраманнине тăвас
кăмăл çуратрĕ. Саккун пулмасан çылăх та вилĕ
пулĕччĕ. 9 Тахçан эпĕ саккун мĕнне пĕлмесĕрех
пурăнаттăм, анчах та пил-хушусене пĕлсессĕн
çылăх чĕрĕлчĕ, 10 эпĕ вара вилтĕм. Ĕнтĕ
чĕрĕлĕхшĕн панă пил-хушу мана вилĕмлĕхе пулчĕ.
11 Мĕншĕн тесен çылăх, пил-хушупа сăлтавласах,
мана илĕртсе улталарĕ, мана пил-хушу пулăшнипех
вĕлерчĕ. 12 Çапла ĕнтĕ саккун таса, пил-хушусем те
таса, тӳрĕлĕхлĕ, ырă.
13 Ырри мана вилĕм кӳчĕ пулать-шим вара?
Паллах, апла мар. Çылăх çавăнпа та çылăх ĕнтĕ, вăл
ыррипе усă курсах мана вилĕм патне илсе пырать.
Çапла вара, пил-хушусене пула çылăх виçесĕр
япăххи курăнать. 14 Эпир пĕлетпĕр: саккун – чун-
чĕм валли, эпĕ вара, ӳт-пӳллĕскер, çылăх чури.
15 Мĕншĕн тесен хам мĕн тунине хам та пĕлместĕп:
мĕн тăвас тенине мар, килĕштерменнине тăватăп.
16 Енчен те эпĕ хам тăвас килменнине тăватăп
пулсан, эппин саккун ырă пулнине йышăнатăп.
17 Чăннипе вара, усаллине эпĕ тумастăп, ăна ăшри
çылăх тутарать. 18 Ман ăшăмра, ман ӳт-пĕвĕмре
ырри пурăнманнине эпĕ пĕлетĕп. Мĕншĕн тесен
манра ырă тăвас килни пур, анчах та эпĕ ырă
тăваймастăп. 19 Хам тăвас тенĕ ыррине
тăваймастăп, хам тăвас темен усаллине вара
тăватăп. 20 Енчен те хам тăвас теменнине тăватăп
пулсан, эппин ăна эпĕ мар, ăшăмри çылăх тăвать.
21 Эпĕ хам ăшăмра çакăн пек йĕрке пуррине
асăрхарăм: ырă тăвас тенĕ чухне усал сиксе тухать.
22 Чунăмпа эпĕ Турă йĕркине хапăлласа йышăнатăп,
23 анчах та ӳт-пĕвĕмре урăх йĕрке пуррине куратăп.
Ӳт-пӳ йĕрки вара ăс-хакăл йĕркипе хирĕçĕве кĕрет,
çав ӳт-пӳ йĕрки мана çылăх тыткăнне илет, ӳт-
пĕвĕм ăнах пăхăнса тăрать. 24 Мĕскĕн те иккен эпĕ!
Çак вилĕмлĕ ӳт-пĕвĕмрен мана кам хăтарĕ? 25 Турă
хăтарать! Иисус Христос урлă, хамăр Хуçамăр урлă,
эпĕ Турра тав тăватăп. Çапла вара, эпĕ, пĕр çынах,
ăс-хакăлăмпа Турă йĕркине пăхăнатăп, ӳт-пĕвĕмпе
– çылăх йĕркине.

## Сывлăш хушнипе пурăнасси

8 Çапла вара, Иисус Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса,
ӳт-пӳшĕн мар, Сывлăшшăн пурăнакансене
халĕ нимĕнле айăплав та пулас çук. 2 Христоспа
пĕрлĕхлĕ туса, чĕрĕлĕх кӳрекен Сывлăш хăвачĕ
мана çылăхпа вилĕм тыткăнĕнчен хăтарчĕ.
3 Хавшак этеме пула вăйне çухатнă саккун
тăвайманнине Турă турĕ. Вăл Хăйĕн Ывăлне, этем
çылăхĕшĕн Турра парнелĕхе кӳмешкĕн çылăхлă
çын евĕрлĕ пултарса, çĕр çине янă. Турă çапла
этемри çылăха айăплав хунă. 4 Çапла Вăл пире, ӳт-
пӳшĕн мар, Сывлăшшăн пурăнакансене, саккун
ыйтнă пек тӳрĕ пурăнччăр тесе тунă. 5 Мĕншĕн
тесен ӳт-пӳшĕн пурăнакансем çылăхлă кăмăлне
тултарасшăн тăрăшаççĕ, Сывлăшшăн
пурăнакансем вара Сывлăш ыйтнине
тивĕçтересшĕн тăрăшаççĕ. 6 Ӳт-пӳ туртни – вилĕм,
Сывлăш ыйтни – чĕрĕлĕхпе канăçлăх. 7 Ӳт-пӳ туртни
хыççăн кайни вăл Турра хирĕç кайниех.
Унашкаллисем Турă йĕркине пăхăнмаççĕ, пăхăнма
та пултараймаççĕ. 8 Çавăнпа та ӳт-пӳшĕн
пурăнакансем Турра юрăхлă пулаймаççĕ. 9 Сирĕнте
Турă Сывлăшĕ пур пулсан, эсир вара ӳт-пӳшĕн мар,
Сывлăшшăн пурăнатăр. Анчах та камра Христос
Сывлăшĕ çук, çавă Христосăн мар. 10 Христос
сирĕнте пулсассăн, ӳт-пӳ çылăхшăн вилĕ, чун-чĕм
вара тӳрĕлĕхшĕн чĕрĕ пулать. 11 Сирĕнте Иисуса
вилĕмрен Чĕртсе тăратаканăн Сывлăшĕ пур
пулсан, эппин Христоса вилĕмрен Чĕртсе
тăратаканĕ сирĕн ăшри Хăйĕн Сывлăшĕпе вилĕмлĕ
ӳт-пĕвĕре те чĕрĕ тăвĕ.
12 Çапла вара, тăванăмсем, ӳт-пӳшĕн
пурăнмашкăн эпир ӳт-пĕве парăмлă мар.
13 Мĕншĕн тесен ӳт-пӳшĕн пурăнатăр пулсан –
вилетĕр. Енчен те Сывлăш пулăшнипе ӳт-пӳ
илĕртĕвĕ хыççăн каймастăр пулсан – чĕрĕ пулатăр.
14 Кам Турă Сывлăшĕ ертсе пынипе çӳрет, çав Турă
ачи пулать. 15 Мĕншĕн тесен эсир чуралăхăн
хăратакан Сывлăшне мар, хăвăра Турă ачи
пултаракан Сывлăша илнĕ. Çав Сывлăша пула эпир
Турра: «Авва, Аттемĕр!» – тесе йăлăнатпăр. 16 Эпир
Турă ачисем пулнине пирĕн чун-чĕме çав Сывлăш

çирĕплетсе пĕлтерет. 17 Енчен те эпир Турă ачисем
пулсассăн, эппин Христос пекех Туррăн еткерне
илме тивĕçлисем пулатпăр. Унăн мухтавне те
пĕрлех пайламашкăн вара пирĕн Христос
асапĕсене те Унпа пĕрле тӳссе ирттермелле.

### Хамăра тивĕçес мухтав

18 Хамăр умра уçăлас мухтавпа танлаштарсан,
хальхи вăхăтлăх асапсем ним тĕшне те тăмаççĕ
тесе шухăшлатăп эпĕ. 19 Мĕншĕн тесен Турă
пултарнă тĕнче Турă ачисем уççăн палăрасса
чăтăмсăр кĕтет. 20 Турă пултарнă тĕнче тĕлсĕрлĕхе
хăй ирĕкĕпе пăхăнман, ăна пăхăнтарнă Турă ирĕкĕ
çапла пулнă. Анчах та Турă пултарнин вилĕм
тыткăнĕнчен хăтăлас, мухтава тата ирĕке Турă
ачисемпе пĕрле пайлас шанчăк пур. 22 Турă
пултарнă пĕтĕм тĕнче халиччenех ахлатса
асапланнине эпир пĕлетпĕр. 23 Тĕнче кăна мар,
эпир те, Святой Сывлăшăн малтанхи çимĕçне
илнĕскерсем, хамăр ăшра ахлататпăр. Турă пире
ывăллăха илессе, ӳт-пĕвĕмĕре çылăх тыткăнĕнчен
хăтарасса кĕтетпĕр, – 24 çакă пире çăлăнăç паракан
шанчăк. Анчах та шанни çитсессĕн, курăнакан
пулсассăн, вăл шанчăк пулма пăрахать. Куç умĕнче
пуррине кам-ха шанчăк теейтĕр? 25 Эпир куç
умĕнче çуккине шанатпăр, ăна тӳсĕмлĕн кĕтетпĕр.
26 Эпир халсăр пулин те, Сывлăш пире çирĕплĕх
парсах тăрать. Мĕншĕн тесен эпир Турра кирлĕ пек
кĕлтума та пĕлместпĕр. Пирĕншĕн Сывлăш Хăй,
этем чĕлхинчи сăмахпа калама май çуккине каласа,
кĕлтуса хута кĕрет. 27 Чĕремĕрсене тĕрĕслекен Турă
вара Сывлăш мĕн каласса пĕлет. Мĕншĕн тесен
Сывлăш, Турă ирĕкĕпе, ĕненекенсен хутне кĕрет.
28 Тата эпир çакна пĕлсе тăратпăр: Турра
юратакансене, Турă ирĕкĕпе чĕнсе илнисене кирек
мĕн те ырри патне илсе пырать. 29 Турă вĕсене
çураличчен малтанах пĕлнĕ, Хăйĕн Ывăлĕ евĕрлĕ
пулмашкăн та малтанах палăртса хунă. Ывăллăха
илнĕ ĕненекен нумай-нумай çын хушшинче Хăйĕн
Ывăлĕ малтанхи пултăр тенĕ. 30 Малтанах палăртса
хунисене Вăл чĕнсе илнĕ. Чĕнсе илнисене Вăл
тӳрре кăларнă. Тӳрре кăларнисене вара мухтава та
кăларнă.

### Турă пире майлă

31 Çакăн пирки тата мĕн калама пулать-ха? Турă
пире майлă пулсан пире хирĕç кам тăрайĕ? 32 Турă
Хăйĕн Ывăлне пирĕншĕн пуриншĕн те
хĕрхенмесĕрех асап аллине панă пулсан, Унпа
пĕрле пире пĕтĕмпех памĕ-и вара? 33 Турă суйласа
илнисене кам айăплама пултарайĕ? Никам та.
Вĕсене Турă тӳрре кăларать. 34 Турă суйласа
илнисене кам суд тума пултарайĕ? Никам та.
Христос Иисус вилнĕ кăна мар, чĕрĕлнĕ те. Вăл
Туррăн сылтăм енне ларнă, Вăл пирĕн хута кĕрет.
35 Турă юратулăхĕнчен пире мĕн уйăрайĕ? Хуйхă-и,
инкек-и, хĕсĕрлев-и, выçлăх-и, сивĕ-и, хăрушлăх-и,
хĕç-и? Çырнинче çапла каланă: 36 «Пире Саншăн
кулленех вĕлереççĕ, пире пусас сурăхсем вырăнне
хураççĕ». 37 Анчах та хамăра Юратаканни вăй парса
тăнăран эпир çак йывăрлăхсене пурне те
çĕнтеретпĕр. 38 Эпĕ çакна çирĕппĕн шанатăп:
вилĕм те, пурăнăç та, ангелсем те, çӳлти
сывлăшсемпе хăватсем те, хальхи те, пуласси те,
39 çӳлти тĕнче те, аялти тĕнче те, пĕтĕм çут тĕнчере
мĕн пурри те пире Христос Иисус урлă, хамăр
Хуçамăр урлă, килекен Турă юратулăхĕнчен уйăраяс
çук.

### Турă Израиле суйласа илнĕ

9 Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса чăн калатăп,
суймастăп. Святой Сывлăшпа хăватланнă таса
чунăм та çакна çирĕплетсе пĕлтерет: 2 чĕрем пысăк
хуйхăпа, чарăнми асаппа тулчĕ. 3 Хампа пĕр йăхри
тăвансемшĕн, Израиль халăхĕшĕн, эпĕ хама
Христосран уйăрттарма та хатĕр. Израиль
çыннисене Турă ывăллăха илнĕ, Хăйĕн мухтавне
вĕсене панă, вĕсене халал панă. Вĕсен саккун та,
Турра кĕлтăвас йĕрке те, Турă шантарса сăмах пани
те пур. 5 Израиль ăрăвĕнченех паллă мăн
асаттемĕрсем тухнă. Ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă Христос
та çуралнă тăрăх вĕсен хушшинченех. Вăл –
аслăран та аслă Турă. Аминь.
6 Израиль çыннисем хăйсене çапла
тыткаланишĕн Турă сăмах пани пурнăçланмарĕ
теме çук. Мĕншĕн тесен Израильтен çуралнисем
пурте Израиль çыннисем мар-ха. 7 Авраам
йăхĕнчен тухнисем те пурте Авраам ачисем мар-ха.
Çырнинче çапла каланă-çке: «Исаакран
çуралнисене санăн тăхăму тейĕç». 8 Урăхла каласан,
çуралнă тăрăх кăна Израиль çынни шутланакан
кашни çынах Турă ачи мар. Турă сăмах панипе
çуралнисем кăна Турă ачисем пулаççĕ. 9 Турă çапла
сăмах панă пулнă: «Палăртнă вăхăтра Эпĕ сан
патна килĕп, ун чухне Саррăн ывăл ача пулĕ». 10 Ку
çеç те мар-ха. Ревеккăн та йĕкĕреш ывăл çие юлнă,
вĕсен ашшĕ мăн асаттемĕр Исаак пулнă. 11 Вара
йĕкĕрешсем çураличченех, ырă е усал тума
ĕлкĕриччене Турă Ревеккăна: «Асли кĕçĕннине
пăхăнса тăрĕ», – тенĕ. Çапла ĕнтĕ Турă ачасене
ӳссессĕн тăвас ĕçĕсене кура мар, Хăй суйласа илнĕ.
Унăн, Чĕнекенĕн, ирĕкĕ çапла пулнă. 13 Çырнинче
ун пирки: «Эпĕ Иакова килĕштертĕм, Исава
килĕштермерĕм», – тенĕ.
14 Халĕ мĕнех калар-ха? Турă тӳрĕ мар-шим? Апла
мар, паллах. 15 «Кама каçармаллине – каçарăп, кама
хĕрхенмеллине – хĕрхенĕп», – тенĕ пулнă Турă
Моисея. 16 Çапла вара каçару этем кăмăлĕнчен те,
этем тăрăшнинчен те мар, каçаракан Турăран
килет. 17 Çырнинче Турă Египет патшине çапла
каланă: «Сан урлă Хамăн вăй-хăватăма
кăтартмашкăн, пĕтĕм çĕр çинче Хамăн ятăма
пĕлтермешкĕн Эпĕ сана патшана лартрăм».
18 Çапла вара Турă Хăй кама каçарас тет, çавна

каçарать; камăн кăмăлне хытарас тет, çавăн
кăмăлне хытарать.

### Турă çиллипе хĕрхенĕвĕ

19 «Апла пулсассăн мĕншĕн-ха Турă пире
айăплать? Унăн ирĕкне кам хирĕçлеме пултарĕ?» –
тейĕн эсĕ мана. 20 Эсĕ, этем, Турăпа тавлашмашкăн
камах вара? Тăм чӳлмек чӳлмекçĕне: «Эсĕ мана
мĕншĕн çапла ăсталарăн?» – тесе ӳпкелешĕ-и?
21 Пĕр тăмранах паха савăт-сапа е ахаль куршак
тăвасси чӳлмекçĕн ирĕкĕ мар-и вара? 22 Тен, Хăйĕн
çиллине тата Хăйĕн хăватне кăтартас тесе, Турă
çылăхлă çынсене – пĕтме пӳрнĕ çилĕ чӳлмекĕсене –
пысăк тӳсĕмлĕхпе хĕрхенсе пурăннă? 23 Тен, çакна
Вăл тӳрĕ çынсене – мухтава тивĕçес хĕрхенӳ
чӳлмекĕсене – Хăйĕн мухтавĕн аслăлăхне пĕр
вăхăтрах кăтартас тесе тунă? 24 Çав хĕрхенӳ
чӳлмекĕсем – эпир. Турă пире иудейсем
хушшинчен кăна мар, урăх халăхсем хушшинчен те
суйласа илнĕ. 25 Çырнинчи Осия кĕнекинче çапла
каланă: «Хамăн мар халăха Хамăн халăхăм тейĕп,
савманнине савнă тейĕп». 26 «Турă вĕсене: „Эсир
Манăн халăхăм мар“, – тенĕ вырăнтах вĕсене: „Эсир
– чĕрĕ Турă ачисем“, – тейĕç». 27 Исаия пророк тата
Израиль çинчен çапла калать: «Израиль ывăлĕсен
шучĕ тинĕс тĕпĕнчи хăйăр пĕрчисем чухлĕ
пулсассăн та, çăлăнса юлаканĕсем йышлăн пулмĕç.
28 Мĕншĕн тесен Хуçа Туррăн çĕр çинчи Сучĕ тĕрĕс
те хăвăрт пулса иртĕ». 29 Исаия пророк ун çинчен
малтанах çапла каланă: «Саваоф Хуçа Турă Авраам
йăхĕнчи çынсенчен сăваплисене упраса хăварман
пулсан, пире Содомпа Гоморрăра пурăннисен
шăпи кĕтнĕ пулĕччĕ».

### Израиль тата Ырă Хыпар

30 Халĕ мĕнех калар-ха? Тӳрре тухас темен урăх
халăхсем тӳрĕлĕх илчĕç, Турра ĕненнĕрен тӳрре
тухрĕç. 31 Саккуна пăхăнса тӳрре тухас тенĕ Израиль
халăхĕ вара тӳрре тухаймарĕ. 32 Мĕншĕн? Мĕншĕн
тесен Израиль халăхĕ ĕненнипе мар, саккуна тытса
пынипе тӳрре тухасшăн пулнă. Çапла вара вăл
„такăнтаракан чулран“ такăннă. 33 Çырнинче çапла
каланă: «Акă, эпĕ Сионра такăнтарса ӳкерекен чул
хуратăп, вара ĕненменнисем такăнса ӳкĕç. Анчах та
Ăна ĕненекен кирек кам та намăса юлмĕ».

10 Эй, тăванăмсем! Эпĕ пĕтĕм чĕререн Израиль
халăхне çăлăнăç сунса Турра кĕлтăватăп.
2 Эсир Турăшăн тăрăшатăр, анчах та çакна
шухăшласа тумастăр тесе эпĕ Израиль çыннисене
çирĕплетсех калатăп. 3 Турă çеç тӳрре кăларасса
ăнланман пирки вĕсем хăйсем тӳрре тухасшăн,
Туррăн тӳрре кăларас шухăшне итлесшĕн мар.
4 Мĕншĕн тесен саккун Христоспа вĕçленет: Турă
кашни ĕненекенех тӳрре кăларать.

### Çăлăнасси çинчен

5 Саккунпа тӳрре тухасси çинчен Моисей çапла
çырнă: «Саккун хушнисене пĕтĕмпех пурнăçлакан
çын чĕрĕлĕхлĕ пулĕ». 6 Ĕненӳпе тӳрре тухасси
çинчен вара Çырнинче çапла каланă: «Хăвăр
ăшăрта: „Тӳпене çĕкленме кам пултарĕ?“ – тесе ан
ыйтăр». Ку вăл: „Çăлакана çĕр çине антарма“ тениех
пулать. 7 Е тата: «„Тĕпсĕрлĕхе анма кам пултарĕ?“ –
ан тейĕр». Ку вăл: „Çăлакана вилĕмрен чĕртсе
тăратмашкăн“ тениех пулать. 8 Çырнинче вара:
«Турă сăмахĕ санăн çывăххунтах, санăн чĕлхӳ-
çăварунта, санăн чĕрӳнте», – тенĕ. Çак сăмах – эпир
вĕрентекен ĕненӳ сăмахĕ. 9 Енчен те эсĕ чĕлхӳ-
çăварупа Иисуса Хуçамăр тесе йышăнатăн пулсан,
чĕрӳпе Турă Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнине
ĕненетĕн пулсан – çăлăнăн. 10 Мĕншĕн тесен тӳрре
тухмашкăн – чĕререн ĕненмелле, çăлăнмашкăн –
ĕненӳ çинчен чĕлхе-çăварпа уççăн каламалла.
11 «Ăна ĕненекен кирек кам та намăса юлмĕ», – тенĕ
Çырнинче. 12 Иудейсемпе ытти халăхсем хушшинче
нимĕнле уйрăмлăх та çук. Мĕншĕн тесен пурин те
пĕр Хуçа Турă, Хăйне тархаслакансемшĕн
пуриншĕн те Вăл ырăлăхлă. 13 «Хуçа Турă ятне
асăнакан кирек кам та çăлăнать», – тесе те каланă-
çке.
14 Анчах та ху ĕненмен Турра епле тархаслас? Ху
илтмен Турра епле ĕненес? Ӳкĕтлесе вĕрентекен
пулмасан ăçтан илтеес? 15 Вĕсене ӳкĕтлесе
вĕрентме никама та яман пулсан, вĕсене кам
ӳкĕтлĕ? Çырнинче çапла каланă: «Канăçлăх çинчен
пĕлтерекенсен, ырри çинчен пĕлтерекенсен
урисем епле чаплă!» 16 Анчах та Ырă Хыпара пуртех
йышăнмарĕç. Исаия пророк каланă пек: «Турăçăм!
Эпир каласа пĕлтернине камах ĕненчĕ?» 17 Çапла
вара, ĕненес тесен, малтан Турă сăмахне илтес
пулать. 18 «Турă сăмахне вĕсем илтмен-им?» – тесе
ыйтатăп эпĕ. Паллах, илтнĕ. Çырнинче каланă пек:
«Вĕсен, вĕрентекенсен, сасси пĕтĕм тĕнчене
сарăлнă, вĕсен сăмахĕ тĕнче хĕрринех çитнĕ».
19 «Çакна Израиль халăхĕ пĕлмен-им?» – тесе
ыйтатăп татах. Ку ыйтăва Моисеях Турă
сăмахĕсемпе хуравланă: «Халăх тесех те калама çук
халăх урлă Эпĕ сирĕнте кĕвĕçӳ çуратăп, çав айван
халăх урлах Эпĕ сирĕнте вĕчĕхӳ çуратăп». 20 «Мана
Хама шыраманнисем тупрĕç; Мана Хам çинчен
ыйтманнисем пĕлчĕç», – тенĕ Исаия пророк урлă
Турă тӳррĕнех. 21 Израиль халăхĕ пирки вара Вăл
çапла каланă: «Аллăмсене çав итлемен, кутăн халăх
енне тăсса, Эпĕ яра куна кăлăхах кĕтрĕм».

### Израилĕн çăлăнса юлас çыннисем

11 Тата çакна ыйтам-ха: «Турă Хăйĕн халăхне
пăрахнă пулать-и вара?» Паллах, апла мар.
Эпĕ хам та Авраам йăхĕнчи, Вениамин сыпăкĕнчи
Израиль çынни. 2 Турă Хăй тĕнчене пултаричченех
пĕлсе тăнă Хăйĕн халăхне пăрахман. Илия,

Израиль халăхне ӳпкелесе, Турра епле тархаслани
çинчен Çырнинче мĕн каланине пĕлместĕр-им
эсир? 3 «Турăçăм! Санăн пророкусене вĕлерчĕç,
парнӳ вырăнĕсене аркатрĕç, пĕр эпĕ кăна тăрса
юлтăм, манăн чунăма та шыраççĕ», – тенĕ Илия.
4 Турă ăна мĕн тесе хуравлать-ха? «Ваала пуççапма
килĕшмен çичĕ пин çынна Эпĕ Хам валли тасан
упраса хăвартăм», – тет Вăл. 5 Хальхи вăхăтра та
çавнашкалах: Турă ырăлăхне пула, Турă суйласа
илнине пула Израилĕн çăлăнса юлас çыннисем
кăна упранса юлнă. 6 Турă ырăлăхĕпе пулсассăн,
эппин, вĕсем ĕçĕсене кура упранса юлман, унсăрăн
Турă ырăлăхĕ ырăлăх та пулмĕччĕ. Ĕçĕсене кура
пулсан, çакă ырăлăх пулмĕччĕ, унсăрăн ĕç те ĕç мар
. 7 Мĕн темелле-ха? Пĕтĕм Израиль халăхĕ хăй илме
ĕмĕтленнине илеймерĕ, ăна Турă суйланисем кăна
илме пултарчĕç. Çавна пула ыттисен чунĕсем
хытнă. 8 Çырнинче çапла каланă: «Турă вĕсем çине
туйми тăвакан сывлăш янă. Вĕсем паян кунччченех
курми куçлă, илтми хăлхаллă». 9 Давид та çапла
калать: «Вĕсен ĕçки-çики вĕсемшĕн таната пултăр,
тавăру мăйкăчи пултăр. 10 Вĕсен куçĕсем
тĕттĕмленччĕр, курми пулччăр, çылăх кукăртса
лартнипе вĕсем нихăçан та тӳрленсе ан
тăрайччăр».

### Ытти халăхсем çăлăнасси çинчен

11 Тата çакна ыйтам-ха: Израиль халăхĕ тăрайми
ӳкмеллех такăннă-шим? Паллах, апла мар.
Иудейсем ӳкни урăх халăх çыннисене çăлăнăç
кӳрет, çакă вара иудейсене кĕвĕçтерет, тăрăшма
хистет. 12 Вĕсем ӳкни те тĕнчешĕн ырă пулсан,
вĕсем çухатни те урăх халăхсене Турăллă тăвать
пулсан, иудейсем Турă патне тавăрăнни мĕнле
тулли ырăлăх пулĕччĕ!
13 Эй, ытти халăх çыннисем! Халĕ вара сире
калатăп. Эпĕ ытти халăхсен апостолĕ пулнă май
хама пӳрнĕ ĕçпе мухтанатăп. 14 Çав хушăрах тата
сирĕн ĕненĕвĕре курнипе тăван халăхăм çыннисем
тăрăшма пуçлаччăр тетĕп. Тен, çапла майпа
вĕсенчен хăшне-пĕрне çăлса хăварайăп? 15 Вĕсем
Турăран пăрăнни пĕтĕм тĕнчене Турăпа çураçтарчĕ
пулсан, вĕсем Турă патне тавăрăнсан мĕн пулĕ? Ку –
вилĕмрен чĕрĕлсе тăниех пулать. 16 Кăвас тĕпĕ таса
пулсан, чусти те таса. Тымарĕсем таса пулсан,
турачĕсем те таса. 17 Енчен те хăш-пĕр хуçăлнă
туратсем вырăнне сана та, вăрман оливĕн турачĕ,
сыпнă пулсан, сад оливĕн тымарĕ-сĕткенĕпе
пĕрлешрĕн пулсан, 18 ытти туратсем умĕнче пуçна
ан каçăрт. Пуçна каçăртсан çакна асту: тымарсене
эсĕ чĕрĕлĕх памастăн, вĕсем сана чĕрĕлĕх параççĕ.
19 «Туратсене мана сыпмашкăн хуçнă», – тейĕн эсĕ.
20 Юрĕ. Вĕсене ĕненмен пирки хуçнă, эсĕ вара
вĕсен вырăнĕнче ĕненĕве пула тытăнса тăратăн.
Çавăнпа пуçна ан каçăрт, хăра. 21 Енчен те Турă
йывăççăн чăн турачĕсене хĕрхенмен пулсан, сана
хĕрхенĕ тетĕн-и? 22 Çапла вара Турă ырă та, çирĕп
те пулнине хăвах куратăн. Хуçăлса ӳкнисемшĕн Вăл
çирĕп. Унăн ырăлăхне шанатăн пулсан, саншăн Вăл
ырă. Шанмастăн пулсан, сана та касса пăрахĕç.
23 Ĕненсе пурăнсан, хуçăлса ӳкнисем те сад оливĕ
çумне сыпăнма пултарĕç, мĕншĕн тесен Туррăн
вĕсене каялла сыпмашкăн хăват пур. 24 Мĕншĕн
тесен эсĕ, вăрман оливĕнчен каснă турат, çут
çанталăк йĕркине пăхмасăрах сад оливĕ çумне
сыпăннă пулсан, çак пĕр тĕпри туратсем хăйсен
йывăççи çумне çăмăллăнах сыпăнĕç.

### Израиль çĕнелесси

25 Эй, тăвансем! Хăвăр пирки мăнна хурса
шухăшласран эпĕ сире çак вăрттăнлăха уçса
парасшăн. Израиль халăхĕ кутăнлашса пурăнасси
яланлăха мар, вăхăтлăха кăна. Чăн Турра пĕлекен
пулнă ытти халăхсен шучĕ кирлĕ виçене çитиччен
çеç çапла пулĕ. 26 Ун чухне пĕтĕм Израиль халăхĕ
çăлăнăç тупĕ. Çырнинче каланă пек: «Иаков
йăхĕнчисен йĕркесĕрлĕхне пĕтерме Сионран
Хăтаракан килмелле. 27 Эпĕ вĕсене çылăхран
хăтарăп, çакă халал пани пулĕ». 28 Эсир Ырă Хыпара
йышăннăран иудейсем ăна йышăнмаççĕ, Турра
хирĕç каяççĕ. Анчах та Турă вĕсене суйласа илнĕ,
мăн аслашшĕсене пула юратать. 29 Мĕншĕн тесен
Турă панине тата чĕнсе илнине туртса илме çук.
30 Ĕлĕкрех эсир те Турра итлеместĕрччĕ. Халĕ вара
иудейсем итлемен пирки Турă сире каçарнă. 31 Сире
каçарнăран иудейсем халĕ Турра итлемеççĕ те ĕнтĕ.
Турă вĕсене те каçарĕ. 32 Турă, пурне те каçарас
тесе, пурне те итлеменлĕх витĕр кăларать.
33 Турă ырăлăхĕн, ăслăлăхĕн, пĕлĕвĕн виçи çук!
Турă шухăшне пĕлме çук, Унăн çулне йĕрлесе тупма
çук! 34 Хуçа Турă ăс-хакăлне пĕлекенĕ пур-и? Ăна
канаш пама пултараканĕ пур-и? 35 Кам та пулин
Турра тавăрса памалла кивçен пани пур-и?
36 Мĕншĕн тесен пурне те Вăл пултарнă, пурте Ун
урлă тата Уншăн пурăнать. Ăна ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!
Аминь.

### Христоспа пĕрлĕхлĕ çĕнĕ пурăнăç

12 Эй, тăванăмсем! Турă ырăлăхĕн ячĕпе
тархаслатăп сире: хăвăр ӳт-пĕвĕре чĕрĕ
парнелĕхе Турра кӳрĕр, вăл сăвапллă та юрăхлă
пултăр. Турăшăн çапла тăрăшни ăслă-тăнлă туни
пулать. 2 Пурăнăçăра çак тĕнче йĕркисемпе ан
шайлаштарăр. Ун вырăнне Туррăн аван, юрăхлă
тата паха ирĕкĕ мĕнне пĕлес тесе эсир хăвăр ăс-
хакăлăра çĕнетсе улшăнăр.
3 Хама панă апостол ирĕкĕпе усă курса сире
пурсăра та калатăп: хăвăра мăнна ан хурăр; хăвăра
сăпайлăн, Турă панă ĕненӳпе виçеллĕн хаклăр.
4 Этемĕн пĕр ӳт-пӳ; ӳт-пӳ пайĕсем нумай, кашни
пайĕ хăйĕн ĕçне тăвать. 5 Эпир те çавнашкалах:
Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса пурте пĕр ӳт-пӳ
шутланатпăр, уйрăмшарăн вара пĕр-пĕринпе
çыхăнура тăракан ӳт-пӳ пайĕсем пулатпăр. 6 Турă
ырăлăхĕпе килĕшӳллĕн пире кашнинех тĕрлĕрен

пултарулăх панă. Çавăнпа та кама пророк
пултарулăхĕ панă, çав унпа хăй ĕненнĕ таран усă
куртăр. 7 Кама Турă ячĕпе çынсемшĕн тăрăшма
панă – тăрăштăр, Турă сăмахне вĕрентекен пулсан –
вĕренттĕр, 8 ÿкĕтлекен пулсан – ÿкĕтлетĕр,
валеçекен пулсан – таса чунпа валеçтĕр, пуçлăх
пулсан – тăрăшса ертсе пытăр, пурлăх тĕлĕшĕнчен
пулăшакан пулсан – савăнсах пулăштăр.
9 Юратанçи пулса мар, пĕр-пĕрне чун-чĕререн
юратăр. Усалтан пăрăнăр, ырă çумне çыпçăнăр.
10 Пĕр-пĕрне тăванла ăшшăн юратăр, пĕр-пĕрне
хисеплеме васкăр. 11 Яланах тăрăшуллă пулăр, чун-
чĕрĕре çунтарăр, Хуçамăршăн ĕçлесе тăрăр.
12 Шанчăкăр сире савăнăç кÿтĕр, хуйхă килсен
тÿсĕмлĕ пулăр, Турра яланах кĕлтăвăр. 13 Ĕненекен
тăванăрсене кирлĕ чухне пулăшăр, ютран
килнисене хапăл тăвăр. 14 Хăвăра хĕсĕрлекенсене
ан ылханăр, ырă сунăр. 15 Савăнаканпа пĕрле
савăнăр, йĕрекенпе пĕрле йĕрĕр. 16 Хăвăр
хушшăрта пĕр шухăшлă пулăр, пуç каçăртса çÿрес
вырăнне йăвашшисем пек пулма тăрăшăр, хăвăра
мăнна ан хурăр. 17 Усала хирĕç усалпа никама та ан
тавăрăр, çынсемшĕн мĕн ырă – çавна тăвăр. 18 Май
пур пулсан пуринпе те çураçуллăн пурăнăр.
19 Тусăмсем! Усал тунишĕн ан тавăрăр, Турă çилли
çитессе шанăр. Мĕншĕн тесен Çырнинче çапла
каланă: «„Тавăру ирĕкĕ Манра, тавăраканĕ Эпĕ
пулăп“, – тет Хуçа Турă». 20 Çавăнпа ĕнтĕ тăшману
выçă пулсан, ăна çитер; ăшĕ хыпнă пулсан, ĕçтер.
Çапла тунипе вăл намăсне ниçта чикме пĕлмĕ.
21 Усала ан парăн, усала ырăпа çĕнтер.

### Влаçсене пăхăнасси

13 Кирек епле чун та аслă влаçсене пăхăнса
пурăнтăр, мĕншĕн тесен влаçлă пурăнăç
йĕркине Турă тунă, кирек епле влаç та Турăран.
2 Çавăнпа та влаçсене хирĕçлекенсем Турă йĕркине
хирĕç каяççĕ. Хирĕçлекенсем вара хăйсемшĕн
хăйсемех айăплав тупĕç. 3 Ырă ĕç тăвакан
влаçсенчен хăрамасть, усал ĕç тăвакан хăрать.
Влаçсенчен хăрамасăр пурăнас килет-и? Ырă ту,
вара вĕсем сана мухтĕç. 4 Пуçлăх вăл – санăн
ырлăхушăн тăрăшакан Турă тарçи. Усал тăватăн
пулсассăн – хăра; пуçлăха ахальтен хĕç паман. Вăл –
Турă тарçи, усал тăвакана тавăрать, айăп хурать.
5 Çавăнпа пуçлăхсене айăпласран хăранипе кăна
мар, чун хушнипе те пăхăнмалла. 6 Вĕсем Турă
тарçисем пулса сирĕншĕн ялан тăрăшнăран эсир
налук тÿлетĕр те. 7 Çапла вара, кашнинех
памаллине парăр: кама – налук, кама – хисеп, кама
– чыс.

### Çывăх çынна юратасси

8 Хире-хирĕçле юратулăх тивĕçĕсĕр пуçне, никама
та нимĕнпе те парăмлă ан пулăр. Çынна юратни
саккун хушнине пурнăçлани пулать. 9 Мĕншĕн
тесен «мăшăрна ан ултала», «ан вĕлер», «ан вăрла»,
«судра суйса ан пĕлтер», «çынăнне ан хапсăн»
текеннисен тата ытти пил-хушусен тĕшши çак
сăмахсенче: «Çывăх çыннуна хăвна юратнă пек
юрат». 10 Юратулăх çывăх çынна усал тумасть.
Çапла вара, юратни саккун хушнине пурнăçлани
пулать.

### Христос килес кун çывхарать

11 Эсир те çапла пурăнăр. Эпир халĕ мĕнле
вăхăтра пурăннине пĕлетĕр. Пирĕн ыйхăран
вăранас вăхăт çитрĕ. Халĕ пирĕншĕн çăлăнăç хамăр
ĕненме пуçланă чухнехинчен çывăхрах. 12 Каç
иртрĕ, кун çывхарса килет. Çавăнпа та тĕттĕмлĕх
ĕçĕсене сирсе ывăтар та çутăлăх хĕçĕсем тытар.
13 Эппин, кун çутинчи пек йĕркеллĕ пурăнар.
Намăссăрланса та ĕçке ярăнса, ясарланса та
аскăнланса, хирĕçсе те кĕвĕçсе пурăнар мар. 14 Ун
вырăнне, Иисус Христос Хуçамăра ĕненсе, хÿтлĕх
тумне тăхăнар. Çылăхлă кăмăл хыççăн каяс мар
тесен, ÿт-пÿшĕн виçине пĕлсе тăрăшар.

### Çывăх çыннуна ан айăпла

14 Хавшак ĕненÿллĕ çынна хăвăр йыша илĕр,
анчах та ăна шухăшĕсемшĕн ан ÿпкелĕр.
2 Калăпăр, пĕри йăлтах çиме юрать тесе
шухăшлать, тепри, хавшак ĕненÿлли, пахча çимĕç
кăна çиет. 3 Апат тиркеменни апат уякана ан
мĕскĕнлеттĕр. Апат уяканни те апат тиркеменнине
айăпласа ан калаçтăр, мĕншĕн тесен вăл та Туррăн.
4 Эсĕ, ют чурана айăплаканскер, ху камах вара? Вăл
хăй Хуçи умĕнче тăрать-и, ÿкнĕ-и – ăна Хуçи пĕлет.
Ÿкнĕ пулсан, Турă ăна ури çине тăратма та
пултарать. 5 Хăшĕ кунпа куна тиркет, хăшĕ пур куна
пĕре хурать. Кам мĕнле шухăшлать, çапла
пурăнтăр. 6 Кунсене уяканни Хуçа Турăшăн уять.
Кунсене тиркеменни те Хуçа Турăшăн тиркемест.
Апат тиркеменни Хуçа Турăшăн тиркемест, мĕншĕн
тесен вăл Турра тав туса çиет. Апат уяканни те Хуçа
Турăшăн уять, мĕншĕн тесен вăл та Турра тав
тăвать. 7 Пурăнасса та эпир хамăршăн
пурăнмастпăр, вилессе те эпир хамăршăн
вилместпĕр. 8 Пурăнсан та – Хуçа Турăшăн
пурăнатпăр; вилсен те – Хуçа Турăшăн вилетпĕр.
Эпир яланах Хуçамăрăн. 9 Мĕншĕн тесен Христос
вилнисемпе чĕррисен Хуçи пулмашкăн вилнĕ те,
чĕрĕлнĕ те. 10 Эсĕ ĕненекен тăванна мĕншĕн
айăплатăн? Эсĕ тата? Хăвăн тăванна мĕншĕн
мĕскĕнлететĕн? Пирĕн пурин те Христос сучĕ умне
тăмалла пулать-çке! 11 Çырнинче çапла каланă:
«„Пурте Манăн умра чĕркуçленĕç, пурте Турра
чĕлхи-çăварĕпе мухтĕç. Çакă Эпĕ пурри пекех чăн“,
– тет Хуçа Турă». 12 Çапла вара, пирĕнтен кашниех
харпăр хăйшĕн Турă умĕнче явап тытĕ.

### Ĕненекен тăванна такăнмашкăн сăлтав ан пар

13 Малашне пĕр-пĕрне айăплар мар. Айăплас
вырăнне тăванăма такăнмашкăн е ÿкмешкĕн

сăлтав парас марччĕ тесе тăрăшар. 14 Иисус Христос
Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ пулнăран эпĕ çакна çирĕп
ĕненетĕп: хăйне тĕллĕн нимĕн те таса мар
пулмасть. Кам мĕне те пулин таса мар тесе
шутлать, çавă уншăн таса мар. 15 Тăвану уякан апата
çисе ăна кӳрентеретĕн пулсан, эппин юратуллă
пурăнмастăн. Христос уншăн та вилнĕ, эппин апата
пула тăванна вилĕмлĕ ан ту. 16 Çапла вара, саншăн
лайăххи теприншĕн тиркемелле ан пултăрччĕ.
17 Мĕншĕн тесен Турă Патшалăхĕ ĕçме-çиме
таврашĕ мар, Святой Сывлăш паракан тӳрĕлĕх,
канăçлăх тата савăнăç. 18 Кам çапла пурăнса
Христосшăн тăрăшать, çав Турра та юрăхлă, çынсем
умĕнче те хисеплĕ. 19 Эппин, пĕр-пĕрне
килĕштерсе, ĕненӳре çирĕплетсе пурăнмалли
майсене шырар. 20 Апат-çимĕç таврашне пула Турă
ĕçне ан пăс. Пур апат-çимĕç те таса, анчах та тăвану
тиркекен апата çини начар. Çапла туса эсĕ ăна
çылăха кĕртетĕн. 21 Эсĕ аш çини, эрех таврашĕ ĕçни
тăванна çылăха кĕртет пулсан – ан çи, ан ĕç.
Тăванна такăнтаракан, ӳкерекен, ĕненĕве
хавшатакан нимĕнле ĕç те ан ту. 22 Санăн ĕненĕвӳ
пур-и? Пур пулсассăн, ăна хăвăн ăшăнта, Турă
умĕнче упра. Хăй суйласа илнĕ япалашăн хăйне
айăпламан çын телейлĕ. 23 Иккĕлене-иккĕленех
çиекене вара Турă айăплать, мĕншĕн тесен вăл
ĕненĕвĕпе килĕшӳллине тумасть. Ĕненӳпе килĕшсе
тăманнине туни вара – çылăх.

### Мухтав сăмахĕсем

24 Турра мухтав. Эпĕ пĕлтерекен Ырă Хыпар урлă –
Иисус Христосах вĕрентнĕ Ырă Хыпар урлă – Турă
сире çирĕплетет. Ырă Хыпар – мĕн ĕмĕртен
пытарăннă вăрттăнлăх, 25 халĕ çав вăрттăнлăха Турă
уçса пачĕ. Ăна пире ĕмĕрхи Турă пророксене
çыртарнă сăмахпа пĕлтернĕ. Ĕненме пуçлаччăр
тесе, Хăйне пăхăнччăр тесе, Турă çав вăрттăнлăха
пур халăха та хыпарламалла турĕ. 26 Ăслăран та
Ăслă Пĕртен-пĕр Турра Иисус Христос урлă ĕмĕр-
ĕмĕр мухтав пултăр. Аминь.

### Çывăх çыннăрсен кăмăлне юрама тăрăшăр

15 Пирĕн, вăйлисен, хамăршăн кăна
тăрăшмалла мар, хавшак чунлисен
çитменлĕхĕсене те каçарма пĕлмелле. 2 Пирĕнтен
кашниех, çывăх çыннине ырра килтĕр тесе, унăн
кăмăлне юрама тăрăштăр. Çапла туни ăс паниех
пулать. 3 Мĕншĕн тесен Христос та Хăй кăмăлне
юрасшăн тăрăшман. Çырнинче каланă пек: «Сана
хурлакансен хурри Мана тиврĕ». 4 Çырнинче
авалах мĕн каланине пире ăс памашкăн çырнă:
эпир, Çырнинче тӳсĕмлĕхпе лăплану тупса,
шанчăка çухатмастпăр. 5 Турра, Иисус Христос
Хуçамăрăн Ашшĕне, пĕр кăмăлтан, пĕр çăвартан
мухтамашкăн, Иисус Христос вĕрентнĕ пек пĕр
шухăшлăн пурăнмашкăн тӳсĕмлĕхпе лăплану Турри
сире пархатар патăр.

### Ырă Хыпар пур халăхсемшĕн те

7 Çавăнпа та, Турă мухтавĕшĕн сире Христос епле
хапăл тунă, эсир те пĕр-пĕрне çавнашкалах хапăл
тăвăр. 8 Эпĕ çакна каласшăн: Турă чăннине
кăтартмашкăн Христос ӳт кастарнисен тарçи пулнă.
Çакна Вăл иудейсен мăн аслашшĕсене панă сăмаха
тытас тесе тунă. 9 Урăх халăхсем те Турра мухтаччăр
тесе, Вăл, Хăйĕн ырăлăхне пула, вĕсен тарçи те
пулнă. Çырнинче каланă пек: «Эй, Турăçăм, Сана
уншăн ытти халăхсем хушшинче чапа кăларăп,
Санăн ятна мухтаса юрлăп». 10 Тата Çырнинче
каланă: «Эй, ытти халăхсем, Унăн халăхĕпе пĕрле
савăнăр!» 11 Тата: «Эй, мĕн пур урăх халăхсем, Хуçа
Турра мухтăр! Мĕн пур халăхсем, Ăна чапа
кăларăр!» – тенĕ. 12 Исаия та çапла каланă: «Иессей
ăрăвĕнчи килĕ те халăхсемпе пуç пулĕ, ытти
халăхсемшĕн шанчăк пулĕ». 13 Шанчăклăх Турри
сирĕн чун-чĕрĕре, хăвăр ĕненнине кура, тĕрлĕ
савăнăçпа, канăçлăхпа тултартăр. Вара шанчăкăр
Святой Сывлăш хăвачĕпе татах çирĕпленĕ.

### Павелăн тĕн сарас ĕçĕ

14 Эй, тăванăмсем! Эсир ырă та тулли кăмăллă,
нумай пĕлӳллĕ пулнине, пĕр-пĕрне вĕрентме
пултарнине шанса тăратăп. 15 Анчах та, сире
асăрхаттарас тесе, хăш-пĕр япаласем пирки эпĕ
хăюллăрах та çыртăм. Турă панă пархатарпа
16 манăн ытти халăхсемшĕн Иисус Христос тарçи
пулмалла, священник тивĕçĕпе вĕсене Туррăн Ырă
Хыпарне вĕрентмелле. Эпĕ Турра пĕлмен
халăхсене Турра кӳретĕп. Святой Сывлăшпа
сăваплатса кӳнĕ çав парнем Турра юрăхлă пултăр.
17 Çапла вара, Иисус Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса,
Турăшăн тунă ĕçĕмпе мухтанма ирĕкĕм пур. 18 Тунă
ĕçĕмпе тени те тĕрĕсех мар-ха. Чăннипе, эпĕ ытти
халăхсене Христос панă сăмахпа тата ĕçпе
ĕнентеретĕп. 19 Çакă вăл тĕрлĕрен паллăсемпе
тĕлĕнмелле ĕçсен хăвачĕпе, Турă Сывлăшĕн
хăвачĕпе пулса пырать. Çапла майпа эпĕ Христосăн
Ырă Хыпарне Иерусалимпа унăн таврашĕнчен
пуçласа Иллирик таран сарма пултартăм. 20 Эпĕ
яланах Ырă Хыпара Христос ячĕ çинчен илтмен
вырăнсенче пĕлтерсе çӳреме тăрăшрăм, урăххисем
вĕрентсе хывнă никĕспе усă курас темерĕм.
21 Çырнинче каланă пек: «Ун çинчен хыпар
пĕлменнисем Ăна курĕç, илтменнисем пĕлĕç».

### Павел Рима кайма шухăшлани

22 Çав сăлтава пула эпĕ халиччен те сирĕн патăра
çитсе кураймарăм. 23 Халĕ çав çĕрсенче эпĕ çитмен
вырăн юлмарĕ ĕнтĕ, сирĕнпе курнăçас тахçанхи
ĕмĕтĕме тултарса, 24 Испание кайма тухсанах сирĕн
патăра çитсе курăп. Çула май сирĕнпе курнăçасса
шанатăп. Сирĕнпе пĕр вăхăт кăмăл туличчен
калаçсан эсир мана малалла кайма пулăшасса та
шанатăп. 25 Халĕ вара эпĕ Иерусалима, унти

ĕненекенсене пулăшма, çула тухатăп. 26 Мĕншĕн
тесен Македонири тата Ахаияри ĕненекенсем
Иерусалимри чухăн ĕненекенсем валли укçа-тенкĕ
пуçтарса парса ячĕç. 27 Вĕсем тăрăшнине
ырламалла. Тепĕр тесен, вĕсем Иерусалимри
ĕненекенсене парăмлă та. Иерусалимрисен чун-
чĕм пуянлăхĕпе ытти халăхсем те усă кураççĕ
пулсан, ун вырăнне вĕсен ӳт-пĕве кирлĕ пуянлăхпа
тавăрса памалла. 28 Çак ĕç-пуççене туса пĕтерсен,
хама шанса панă укçа-тенкĕне вĕсене леçсе парсан,
эпĕ Испание кайма тухăп. Вара, çула май, сирĕн
патăра çитсе курăп. 29 Пырсассăн эпĕ Христос Ырă
Хыпарĕн тулли пиллĕхне сире çитерсе парасса
шанатăп.
30 Эй, тăванăмсем! Сире Иисус Христос Хуçамăр
ячĕпе, Святой Сывлăш юратулăхĕпе тархасласа
йăлăнатăп: хам кĕлтунă пекех, эсир те Турра
маншăн тăрăшса кĕлтăвăр. 31 Манăн Иудейăри
ĕненмен çынсен хурри пулас марччĕ, эпĕ тăрăшни
Иерусалимри ĕненекен тăвансемшĕн усăллă
пултăрччĕ. 32 Вара эпĕ Турă ирĕкĕпе сирĕн патăра
савăнсах çитĕттĕм, сирĕнпе пĕрле канăçлăх
тупăттăм. 33 Канăçлăх Турри сирĕнпеле пултăр.
Аминь.

### Ятран салам яни

16 Эпĕ сире Кенхрен чиркĕвĕнчи ĕненекен
тăванăмăрпа, Фива ятлă диакониссăпа ,
паллаштарасшăн. 2 Эсир çав хĕрарăма Хуçа Турă
ячĕпе, ĕненекенсене тивĕçлĕ пек, хапăл тусамăр.
Хăвăр патăрта ăна мĕн кирлипе пулăшсамăр. Вăл
хăй те нумайăшне, çав шутрах мана та, пулăшнă.
3 Иисус Христос ĕçĕнчи юлташăмсене Прискиллăпа
Акилăна салам калăр. 4 Вĕсем ман чунăмшăн
пуçĕсене хума та хатĕр пулчĕç. Вĕсене пĕр эпĕ кăна
мар, Христоса ĕненекен ытти халăх çыннисен
чиркĕвĕсем те пурте тав тăваççĕ. Вĕсен килти
чиркĕвне пухăнакансене те манран салам калăр.
5 Хаклă Епенет тусăма, Ахаияра Христоса ĕненме
пуçлакансенчен пĕри пулнăскерне, манран салам
калăр. 6 Хамăршăн вăйне шеллемесĕр тăрăшнă
Мариама та салам яратăп. 7 Тăван халăхăм
çыннисене Андроникпа Юнияна та манран салам.
Вĕсем манпа пĕрле тĕрмере ларнăччĕ, апостолсем
хушшинче те вĕсем паллă çынсем шутланаççĕ.
Христоса ĕненме те вĕсем манран маларах
пуçланăччĕ. 8 Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ савнă Амплие
салам калăр. 9 Хамăрпа пĕрле Христосшăн
тăрăшакан Урбана тата хаклă Стахияна та салам.
10 Ĕненӳре тĕрĕсленнĕ Апеллеса, чăн-чăн Христос
çыннине, салам калăр. Аристовулăн ĕненӳри
шанчăклă кил-йышне те салам çитерĕр. 11 Тăван
халăхăм çыннине Иродиона та манран салам.
Наркисс кил-йышĕнчисене те, Хуçамăрпа
пĕрлĕхлисене, салам калăр. 12 Хуçамăршăн вăй
хуракан хĕрарăмсене, Трифенпа Трифоса, манран
салам. Хуçамăршăн нумай тăрăшнă хаклă
Персидăна та манран салам çитерĕр. 13 Хуçамăра
ĕненнипе палăрнă Руфа тата унăн амăшне салам
калăр. Эпĕ хам та ăна аннем вырăннех хуратăп.
14 Асинкрита, Флегонта, Ерма, Патрова, Ермие тата
вĕсемпе хутшăнса пурăнакан ытти ĕненекенсене те
манран салам. 15 Юлияпа Филолога, Нирейпа
аппăшне, Олимпана тата вĕсемпе хутшăнса
пурăнакан мĕн пур ĕненекенсене салам калăр.
16 Пĕр-пĕрне сăваплăн, тăванла чуптуса ырă сунăр.
Христос чиркĕвĕсем те пурте сире салам яраççĕ.
17 Эй, тăвансем! Тархасласа калатăп: эсир тĕрĕс
вĕрентĕве илнĕ ĕнтĕ. Эпир вĕрентнĕ пек мар,
урăхла вĕрентсе хирĕçтерекенсенчен,
такăнтаракансенчен асăрханăр. Унашкаллисенчен
пăрăнăр. 18 Вĕсем Иисус Христос Хуçамăршăн мар,
хăйсен хырăмĕшĕн тăрăшаççĕ; япшар чĕлхисемпе
йăпăлтатса, ырă пулса, айваннисене улталаççĕ.
19 Эсир ĕненĕве чунпа парăннине пурте пĕлеççĕ,
эпĕ те сирĕншĕн савăнатăп. Çапах та ман сире
çакна калассăм пур: ырă тума ăста пулăр, усал тума
пĕлмен пулăр. 20 Канăçлăх Турри часах шуйттана
çапса антарĕ, сирĕн урăр айне тăвĕ. Иисус Христос
Хуçамăр ырăлăхĕ сирĕнпе пултăр! Аминь.
21 Ĕçри юлташăм Тимофей тата тăван халăхăм
çыннисем Луций, Иасон, Сосипатр сире салам
яраççĕ. 22 Эпĕ те, çак çырăва çырма пулăшакан
Тертий, Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕскер, сире салам
яратăп. 23 Гаий те сире салам калать. Ютран килнĕ
ĕненекенсем ун килĕнче чарăнса тăраççĕ, мана та
вăл хапăл турĕ. Сире хула хыснин управçи Ераст
тата Кварт тăванăм салам яраççĕ.
24 Сире пурне те Иисус Христос Хуçамăрăн
ырăлăхĕ пултăр! Аминь .

# Коринфсем патне 1-мӗш

## Саламлани тата тав туни

1 Турӑ ирӗкӗпе Иисус Христос апостолӗ пулма
чӗнсе илнӗ Павелран тата Сосфен тӑванӑмран
– 2 Коринфри Турӑ Чиркӗвне, Христос Иисус урлӑ
тасалнӑ ӗненекенсене, сӑваплӑ пулма чӗнсе
илнисене, Иисус Христос Хуҫамӑрӑн ятне – пире те,
вӗсене те Ҫӑлаканӑн ятне – пур ҫӗрте те
асӑнакансене пурне те. 3 Сире Атте Туррӑмӑртан
тата Иисус Христос Хуҫамӑртан ырӑлӑхпа канӑҫлӑх
пултӑр.
4 Эпӗ сирӗншӗн, Иисус Христос урлӑ Турӑ сире
ырӑлӑхне панӑшӑн Туррӑма тӑтӑшах тав тӑватӑп.
5 Унпа пӗрлӗхлӗ пулса эсир мӗн пур пултарулӑх
тӗлӗшӗнчен пуйрӑр: тем тӗрлӗ сӑмах, тем тӗрлӗ
пӗлӳ ытлӑн-ҫитлӗн илтӗр. 6 Ӗнтӗ эпир Христос
ҫинчен пӗлтерни сирӗн ӑшӑрта ҫирӗпленчӗ.
7 Ҫапла вара, сирӗн, Иисус Христос Хуҫамӑр килессе
кӗтекенсен, пултарулӑх тӗлӗшӗнчен ҫитменни
нимӗн те ҫук. 8 Иисус Христос Хуҫамӑрӑн кунӗнче
сирӗн Ун умне пӗр айӑпсӑр тӑмалла пултӑрччӗ
тесе, Вӑл сире юлашки вӑхӑтченех ҫирӗплетсе
тӑрӗ. 9 Турра шанӑр: Вӑл сире Хӑйӗн Ывӑлӗпе Иисус
Христоспа, пирӗн Хуҫамӑрпа, пӗрле пулмашкӑн
чӗнсе илнӗ.

## Ӗненекен ушкӑнри харкашусем

10 Эй, тӑвансем! Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе
тархаслатӑп сире: пурте шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса,
харкашмасӑр-тумасӑр пурӑнӑр; пӗр кӑмӑллӑн, пӗр
шухӑшлӑн ҫӳрӗр. 11 Мӗншӗн тесен, тӑванӑмсем,
Хлоя кил-йышӗнчисем мана сирӗн хушшӑрта
харкашусем пурри ҫинчен пӗлтерчӗҫ. 12 Эпӗ акӑ
мӗн пирки каласшӑн. Сирӗнтен кашниех: «эпӗ
Павел майлӑ», «эпӗ Аполлос майлӑ», «эпӗ Кифа
майлӑ», «эпӗ вара Христос майлӑ» тесе ҫӳрет.
13 Христос пайланса кайнӑ пулать-и вара? Мӗн,
сирӗншӗн Павела пӑталанӑ-и? Сире Павел ячӗпе
тӗне кӗртнӗ-и? 14 Криспсӑр тата Гаийсӗр пуҫне эпӗ
сирӗнтен нихӑшне те тӗне кӗртменнишӗн Турра
тав тӑватӑп. 15 Эппин, сирӗнтен пӗри те ман ятӑмпа
тӗне кӗнӗ тесе калама пултараймасть. 16 Тата эпӗ
Стефан кил-йышӗнчисене шыва кӗртнӗччӗ, урӑх
кама та пулин тӗне кӗртнине астумастӑп. 17 Христос
мана тӗне кӗртме мар, Ырӑ Хыпар пӗлтерме янӑ.
Христос хӗресӗн хӑватне ҫухатас марччӗ тесе
манӑн ҫав ӗҫе хама ӑсла хумасӑр тумалла.

## Христос – Туррӑн хӑвачӗпе ӑслӑлӑхӗ

18 Хӗрес ҫинчен вӗрентни вӑл пӗтмеллисемшӗн –
ӑссӑрлӑх, пирӗншӗн, ҫӑлӑнмаллисемшӗн – Турӑ
хӑвачӗ. 19 Мӗншӗн тесен Ҫырнинче ҫапла каланӑ:
«Эпӗ ӑслисен ӑслӑлӑхне аркатӑп, тӑнлисен
тӑнлӑхне сирсе ярӑп». 20 Ӑҫта ӑсли? Ӑҫта саккуна
вӗрентекен? Ӑҫта ҫак тӗнчери тавлашу ӑсти? Турӑ
ҫак тӗнчери ӑслӑлӑхран ӑссӑрлӑх туман-и?
21 Мӗншӗн тесен Турӑ ӑслӑлӑхне пӗлмешкӗн ҫак
тӗнче ӑслӑлӑхӗ ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа та Турӑ
ӗненекенсене ӑссӑр пек туйӑнакан ӳкӗтпе ҫӑлма
кӑмӑл тунӑ. 22 Иудейсем хӑват кӑтартмашкӑн
ыйтаҫҫӗ, грексем ӑслӑлӑх шыраҫҫӗ. 23 Эпир вара
пӑталанӑ Христос ҫинчен ӳкӗтлесе вӗрентетпӗр.
Иудейсемшӗн Вӑл такӑнса ӳкмелли чул,
грексемшӗн – пуҫа вырнаҫми япала. 24 Анчах та
чӗнсе илнисемшӗн – иудей-и вӑл, грек-и – Христос –
Туррӑн хӑвачӗпе ӑслӑлӑхӗ. 25 Мӗншӗн тесен Туррӑн
ӑссӑрлӑхӗ текенни этем ӑслӑлӑхӗнчен ҫӳллӗрех,
Туррӑн вӑйсӑрлӑхӗ текенни этем вӑйӗнчен
хӑватлӑрах.
26 Эй, Турӑ чӗнсе илнӗ тӑвансем! Хӑвӑр ҫине
пӑхӑр-ха. Сирӗн хушшӑрта этемле виҫепе ӑслисем,
вӑйлисем, чаплӑ йӑхран текеннисем нумай мар.
27 Анчах та Турӑ ӑслисене намӑса хӑвармашкӑн ҫак
тӗнчере ӑссӑр текеннисене, вӑйлисене намӑса
хӑвармашкӑн ҫак тӗнчере вӑйсӑр текеннисене
суйласа илнӗ. 28 Чаплисене пӑрахӑҫ тумашкӑн Турӑ
тӗнчере чапсӑррисене, мӗскӗннисене, ним тӗшне
тӑманнисене суйласа илнӗ. 29 Ҫакна Турӑ Хӑйӗн
умӗнче никам та мӑнкӑмӑлланса ан мухтантӑр тесе
тунӑ. 30 Турӑ ырӑлӑхне пула эсир Иисус Христоспа
пӗрлӗхлӗ. Турӑ Ӑна пирӗн ӑслӑлӑх та, тӳрӗлӗх те,
сӑваплӑх та, тӳлевлӗх те тунӑ. 31 Эппин, Ҫырнинче
каланӑ пек: «мухтанас текен Турӑпа мухтантӑр».

## Пӑталанӑ Христос ҫинчен пӗлтересси

2 Ҫапла вара, тӑвансем, эпӗ сирӗн патӑра Турӑ
пӗлтернине хыпарлама пырсассӑн хама ӑсла
хурса тата япшар чӗлхеллӗн калаҫмарӑм. 2 Мӗншӗн
тесен эпӗ сире пӑталанӑ Иисус Христос ҫинчен
кӑна каласа парас терӗм. 3 Сирӗн патӑра пынӑ
чухне эпӗ халсӑрччӗ, хӑраса чӗтреттӗм, питӗ
пӑлханаттӑм. 4 Сирӗн ӗненӗвӗр этем ӑслӑлӑхӗ
ҫинче мар, Турӑ вӑй-хӑвачӗ ҫинче никӗслентӗр тесе
эпӗ сире этем ӑсӗн витӗмлӗ сӑмахӗсемпе мар,
Святой Сывлӑш хӑвачӗпе вӗрентрӗм, ӳкӗтлерӗм.

### Турӑ Хӑйӗн Сывлӑшӗ урлӑ уҫса пани

[6] Ӑслӑлӑха вара эпир чун-чӗмпе аталанса
ҫитнисене ӳкӗтлесе вӗрентетпӗр, анчах вӑл ҫак
тӗнчен, ҫак тӗнчери пӗтес пуҫлӑхсен ӑслӑлӑхӗ мар.
[7] Эпир Туррӑн вӑрттӑн, халиччен пытарӑнса
усраннӑ ӑслӑлӑхне ӳкӗтлесе вӗрентетпӗр. Пире
мухтава кӑлармашкӑн ҫав ӑслӑлӑха Турӑ тӗнче
пуҫланиччченех хатӗрлесе хунӑ. [8] Вӑл ӑслӑлӑха ҫак
тӗнчери пуҫлӑхсенчен пӗри те пӗлеймен. Пӗлнӗ
пулсассӑн вӗсем мухтав Хуҫине пӑталамӗччӗҫ.
[9] Ҫырнинче ҫапла каланӑ: «Хӑйне юратакансем
валли Турӑ мӗн хатӗрлесе хунине пӗри те куҫпа
курман, хӑлхапа илтмен, ӑспа та шухӑшласа
илеймен». [10] Пире вара ҫавна Турӑ Хӑйӗн Сывлӑшӗ
урлӑ уҫса пачӗ, мӗншӗн тесен Сывлӑш пӗтӗмпех,
ҫав шутрах Туррӑн тӗпсӗрлӗхне те, тишкерме
пултарать. [11] Ҫын шухӑшне этемсенчен кам пӗлме
пултарӗ? Ҫав ҫын ӑшӗнчи чун-чӗм кӑна пӗлеет.
Ҫавнашкалах Турӑ шухӑшне те Турӑ Сывлӑшӗ кӑна
пӗлет. [12] Анчах та эпир, Турӑ хамӑра мӗн панине
пӗлес тесе, ҫак тӗнчен чунне мар, Турӑран килекен
Сывлӑша илтӗмӗр. [13] Турӑ Сывлӑшӗллӗ пулас
текенсене Сывлӑш ҫинчен каланӑран ҫавсем
ҫинчен йӑлтах эпир этем ӑслӑлӑхӗнчен килекен
сӑмахсемпе мар, Святой Сывлӑшран килекен
сӑмахсемпе хыпарлатпӑр. [14] Хӑй чунне шанакан
ҫын Турӑ Сывлӑшӗнчен килекен ҫав чӑнлӑха
йышӑнаймасть, ӑна ӑссӑрлӑх тесе шухӑшлать. Ҫав
чӑнлӑха вӑл ӑнланаймасть, мӗншӗн тесен ӑна
Сывлӑш урлӑ кӑна хаклама пулать. [15] Турӑ
Сывлӑшӗллӗ ҫын йӑлтах хаклама пултарать,
ҫыннине хӑйне никам та хаклаймасть. [16] Хуҫа Турра
канаш памашкӑн Унӑн ӑс-хакӑлне пӗлекенӗ пур-и?
Пирӗнте вара – Христос ӑсӗ.

### Турӑшӑн пӗрле ӗҫлекенсем

3 Эй, тӑвансем! Ӗнтӗ эпӗ сирӗнпе Сывлӑшшӑн
пурӑнакансемпе калаҫнӑ пек мар, ӳтшӗн
пурӑнакансемпе калаҫнӑ пек, Христос ӗненӗвӗнчи
пӗчӗк ачасемпе калаҫнӑ пек калаҫрӑм. [2] Ӳтшӗн
пурӑннӑран эсир хытӑ ҫимӗҫ ҫиейместӗрччӗ, халӗ
те шӑл витерейместӗр, ҫавӑнпа эпӗ сире сӗтпе
тӑрантартӑм. Сирӗн хушшӑрта кӗвӗҫӳ, харкашу,
хирӗҫӳ пур пулсассӑн эсир ӳтшӗн пурӑнакансемех
мар-и вара? Этем йӑли-йӗркипе пурӑнакансемех
мар-и вара? [4] Енчен те пӗри: «Эпӗ Павел майлӑ»,
тепри: «Эпӗ Аполлос майлӑ», – тет пулсан, эсир
ӳтшӗн пурӑнакансем кӑна мар-и? [5] Павел камах
вара? Аполлос камах вара? Сире Турӑ патне илсе
пынӑ тарҫӑсем кӑна. Ҫак ӗҫе кашниех Хуҫа Турӑ
хӑйне панӑ пултарулӑхне кура тӑвать. [6] Эпӗ акрӑм,
Аполлос шӑварчӗ, анчах та ӳстерекенӗ – Турӑ.
[7] Ҫавӑнпа акакан та, шӑваракан та нимех те мар,
пурте ӳстерекен Турӑран килет. [8] Акакан та,
шӑваракан та пӗр ӗҫех тӑваҫҫӗ, анчах та вӗсенчен
кашниех ӗҫне кура сӑвап илӗ. [9] Мӗншӗн тесен эпир
– Турӑшӑн пӗрле ӗҫлекенсем, эсир – Туррӑн уй-
хирӗ, Туррӑн ҫурчӗ.
[10] Хама панӑ Турӑ ырӑлӑхне пула эпӗ, ҫурт тӑвакан
ӑста пек, никӗс хыврӑм, тепри ҫав никӗс ҫинче ҫурт
хӑпартать. Эпӗ хам епле ӗҫлетӗп-ши тесе, харпӑр
хӑй асӑрхантӑр. [11] Мӗншӗн тесен хывнӑ никӗс вӑл –
Иисус Христос. Унран урӑххине никам та хываймӗ.
[12] Ҫав никӗс ҫине кам мӗнрен ҫурт хӑпартни:
ылтӑнран-и, кӗмӗлтен-и, хаклӑ йышши чулсенчен-
и, йывӑҫран-и, хыт-хураран-и, улӑмран-и, –
[13] кашнин ӗҫӗ юлашки кун палӑрӗ. Ҫав кун вутланса
килӗ, вара кашнин ӗҫӗ мӗн тӗшне тӑни вутпа
тӗрӗсленӗ. [14] Камӑн ӗҫӗ вут витӗр тухайӗ, ҫав
сӑвапа тивӗҫ пулӗ. [15] Камӑн ӗҫӗ вутра ҫунса кайӗ,
ҫав инкек тӳсӗ. Ҫынни хӑй вара аран-аран, вутран
хӑтӑлнӑ пек, хӑтӑлӗ. [16] Хӑвӑр Турӑ ҫурчӗ пулнине,
хӑвӑрта Турӑ Сывлӑшӗ пуррине пӗлместӗр-им
эсир? [17] Турӑ ҫуртне аркатакана хӑйне Турӑ
аркатать, мӗншӗн тесен Турӑ ҫурчӗ таса; ҫав ҫурт
вӑл – эсир.
[18] Хӑвӑра хӑвӑр ан улталӑр. Ҫак тӗнчере кам
хӑйне ӑслӑ тесе шутлать, чӑннипех те ӑслӑ пулас
тесессӗн ӑссӑр пултӑр. [19] Мӗншӗн тесен ҫак тӗнче
ӑслӑлӑхӗ Турӑ умӗнче – ӑссӑрлӑх. Ҫырнинче ҫапла
каланӑ: «Турӑ ӑсчахсене хӑйсем карнӑ чеелӗх
танатипех тытать». [20] Тепӗр тӗлте тата ҫапла
каланӑ: «Ӑсчахсен шухӑшӗсем усӑсӑррине Хуҫамӑр
пӗлет». [21] Ҫапла вара, этемпе никам та ан
мухтантӑр, мӗншӗн тесен пурте сирӗн: [22] Павел та,
Аполлос та, Кифа та, тӗнче те, пурӑнӑҫ та, вилӗм те,
хальхи те, пуласси те – пурте сирӗн. [23] Эсир –
Христосӑн, Христос вара – Туррӑн.

### Апостол ӗҫӗ ҫинчен

4 Ҫапла вара, ӗненекенсен пурин те пире
Христос тарҫисем, Турӑ вӑрттӑнлӑхӗн
управҫисем вырӑнне хумалла. [2] Управҫӑ пулма
шаннисен вара пурин те шанчӑклӑ пулмалла.
[3] Эсир е ыттисем ман пирки мӗн шухӑшлани мана
ытлах пӑшӑрхантармасть, эпӗ хама хам та хак
памастӑп. [4] Чунӑм тасах пулин те, ҫакӑ мана тӳрре
кӑларӗ тесе шухӑшламастӑп. Мана суд тӑваканӗ –
Хуҫа Турӑ. [5] Ҫавӑнпа та вӑхӑчӗ ҫитиччен, Хуҫамӑр
тепре киличчен никама та айӑпласа ан калаҫӑр.
Вӑл килӗ те тӗттӗмре палӑрманнине ҫутта кӑларӗ,
вӑрттӑн шухӑшсене те палӑрмалла тӑвӗ. Ҫавӑн
чухне вара кашниех Турӑран хӑйне тивӗҫ мухтавне
илӗ.
[6] Эй, тӑвансем! Сире ырӑ сунса, мӗн каланине эпӗ
Аполлоспа иксӗмӗр ҫинчен тӗслӗх вырӑнне
каларӑм. Ҫырса янинчен ытла нимӗн те ан
шухӑшласа кӑларччӑр, пӗри теприне мала ан
хуччӑр терӗм. [7] Эсӗ ыттисенчен лайӑхрах тесе кам
каланӑ? Турӑ панисӗр пуҫне санӑн мӗн пур? Енчен
те Турӑ панӑ пулсан, мӗншӗн эсӗ илмен пек
мухтанатӑн? [8] Эпир чун-чӗм апачӗ ҫисе
тӑрантӑмӑр, пирӗн йӑлтах ҫителӗклӗ тетӗр эсир,
хӑвӑра Ҫӳлти Патшалӑха кӗме тивӗҫлисем пек

тыткалатӑр, пирӗнсӗрех чи ҫӳлти шая ҫӗкленнӗ. Ах, эсир чӑнахах унта кӗме тивӗҫ пулсанччӗ! Вара эпир те сирӗнпех пулӑттӑмӑр! 9 Ман шухӑшпа, пире Турӑ мӗскӗнрен те мӗскӗн, вилме пӳрнӗ чурасенни пек шӑпа панӑ, мӗншӗн тесен эпир тӗнче кулли пултӑмӑр, ангелсемпе ҫынсем те пирӗнтен кулаҫҫӗ. 10 Эппин эпир Христоса пула ӑссӑр, эсир вара Христоса пулах ӑслӑ. Эпир халсӑр, эсир вӑйлӑ. Эсир хисеплӗ, эпир чыссӑр. 11 Эпир паян кунччenex ҫинӗ-ҫимен, ӗҫнӗ-ӗҫмен, тумланнӑ-тумланман ҫӳретпӗр, пире хӗнеҫҫӗ, кил-ҫуртӑмӑр та ҫук. 12 Мӗн пуррине те хамӑр алӑпа ӗҫлесе илкелетпӗр. Пире ятлаҫҫӗ, эпир ырӑ сунатпӑр; пире хӗсӗрлеҫҫӗ, эпир чӑтатпӑр. 13 Пире хурлаҫҫӗ, эпир хамӑра хурлакансемшӗн кӗлтӑватпӑр. Эпир ҫак тӗнчешӗн ҫӳп-ҫап кӑна, пурте халиччenex таптакан тусан кӑна.

14 Ҫакна сире намӑслантарас тесе мар, савнӑ ачамсене ӳкӗтленӗ пек ӳкӗтлесе ҫыратӑп. 15 Христос ӗненӗвӗнчи вӗрентӳҫӗсем сирӗн пинӗпех пулин те, аҫӑрсем сахал. Эпӗ вара, сире Ырӑ Хыпар пӗлтерсе, Христос ӗненӗвӗнчи аҫӑр пулса тӑтӑм. 16 Ҫавӑнпа та сире тархаслатӑп: эпӗ Христос евӗрлӗ пулма тӑрӑшнӑ пекех, эсир те ман пек пулма тӑрӑшӑр. 17 Ҫав сӑлтавпах эпӗ сирӗн патӑра Тимофея ятӑм. Вӑл – ӗненӳри савнӑ ывӑлӑм, Хуҫа Турӑ умӗнче шанчӑклӑскер. Эпӗ Христос ҫулӗпе епле ҫӳретӗп, пур ҫӗрте те, пур чиркӳсенче те ҫапла вӗрентетӗп. Ун ҫинчен Тимофей сире аса илтерӗ. 18 Эпӗ сирӗн патӑра пырайман пирки сирӗнтен хӑшӗ-пӗри мӑнаҫлансах кайнӑ. 19 Анчах та, Турӑ пулӑшсассӑн, эпӗ часах сирӗн патӑра ҫитсе курӑп-ха. Ун чухне вара мӑнаҫлисен хитре сӑмахне мар, ӗненӳ хӑватне тӗплӗнрех пӗлӗп. 20 Мӗншӗн тесен Турӑ Патшалӑхӗ хитре сӑмахра мар, ӗненӳ хӑватӗнче. 21 Ӗнтӗ пынӑ чухне манӑн туяпа пырас-и? Е юратуллӑ йӑваш чунӑмпа? Хӑшне кӑмӑллатӑр?

## Аскӑнлӑха питлени

5 Сирӗн хушшӑрта аскӑнланасси пур текен сӑмах тухрӗ. Унашкал аскӑнлӑха чӑн Турра пӗлмен халӑхсем хушшинче те кураймӑн: сирӗнтен пӗри амаҫурипе пурӑнать тет. 2 Сирӗн ҫавнашкал хӑтланакана хӑвӑр ушкӑнтан хӑваласа ямалла. Эсир вара, кулянас вырӑнне, мӑнаҫланса ҫӳретӗр. 3 Кӗлеткемпе сирӗнпе мар пулин те, чун-чӗмпе эпӗ сирӗнпе. Ҫавнашкал хӑтланакана, хам сирӗн хушшӑрта пулнӑ пекех, ҫапла айӑп хума шут тытрӑм. 4 Эсир Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе пуху пуҫтарӑр, чун-чӗмпе унта эпӗ те пулӑп. Иисус Христос Хуҫамӑрӑн кунӗ ҫитсессӗн ҫав ҫыннӑн чунӗ ҫӑлӑнтӑр тесен, эсир Иисус Христос Хуҫамӑрӑн хӑвачӗпе ҫав ҫынна, ӳт-пӗвне вилесле асаплантарма, шуйттан аллине парӑр. 6 Мухтанмалли сирӗн нимех те ҫук. Сахал кӑвас тӗпӗ пӗтӗм чустана йӳҫӗтсе янине пӗлместӗр-им эсир? 7 Эппин, ҫӗнӗ чуста пулас тесен, кивӗ кӑвас тӗпне хырса тӑкӑр. Эсир ҫӗнӗ, йӳҫӗтмен чуста, мӗншӗн тесен пирӗн пасха Путеккине, Христоса, пирӗншӗн парнелӗхе кӳнӗ. 8 Ҫавӑнпа та пасхӑна кивӗ кӑвас тӗпӗпе – ҫылӑхпа тата усаллӑхпа – йӳҫӗтсе пӗҫернӗ ҫӑкӑрпа мар, тасалӑхпа чӑнлӑхӑн тутлӑлла пӗҫернӗ ҫӑкӑрӗпе уявлар!

9 Аскӑн ҫынсемпе хутшӑнса ан пурӑнӑр тесе эпӗ сирӗн патӑра ҫырнӑччӗ ӗнтӗ. 10 Паллах, ҫак тӗнчери мӗн пур аскӑн, ҫӑткӑн, хапсӑнчӑк, кӗлеткене пуҫҫапакан ҫынсемпе ан хутшӑнӑр теместӗп эпӗ. Унашкаллисемпе хутшӑнас мар тесен сирӗн ку тӗнчерен пусӗпех каймалла пулса тухать. 11 Эпӗ сирӗн патӑра хӑйсене ӗненекен тӑванӑрсем пек кӑтартакан, анчах та аскӑн, ҫӑткӑн, кӗлеткесене пуҫҫапакан, сӑмахпа хӑртакан, ӗҫкӗҫ, хапсӑнчӑк ҫынсемпе хутшӑнса ан пурӑнӑр, пӗрле ӗҫсе ан ҫиййӗр тесе ҫырнӑччӗ. 12 Ӗненекен ушкӑнра маррисене айӑпласси ман ӗҫ-им? Хӑвӑр ушкӑнрисене вара хӑвӑрӑнах айӑпламалла мар-и? 13 Ушкӑн тулашӗнчисене Турӑ айӑплӗ. Пӑсӑк ҫынна вара хӑвӑр хушшӑртан хӑваласа ярӑр.

## Турра хисеплеменнисем умӗнче судлашни

6 Епле-ха тата, пӗр-пӗринпе хирӗҫмелли сӑлтав тупӑнсан, сирӗнтен хӑшӗ-пӗри ӗненекен ушкӑнра мар, Турра хисеплеменнисем умӗнче судлашать? 2 Ӗненекенсем ҫак тӗнчене суд тӑвассине пӗлместӗр-им? Тӗнчене суд тӑваканӗсем эсир пулатӑр пулсассӑн, чылай пӗчӗкрех ӗҫсене хӑвӑрах суд тума тивӗҫ мар-и? 3 Эпир ангелсене те суд тӑвасса пӗлместӗр-им? Пурӑнан пурӑнӑҫри ӗҫсене те хамӑр тӗллӗн татса параймастпӑр-и? 4 Эсир вара, пурӑнан пурӑнӑҫра хирӗҫмелли тупӑнсассӑн, ӗненекен ушкӑнра тӑман судьясем патне каятӑр. 5 Сире намӑс пултӑр тесе калатӑп: тӑвансем хушшинчи ӗҫсене татса пама пултаракан ӑслӑ-тӑнлӑ пӗр ҫын та ҫук-и сирӗн? 6 Эсир тӑванпа тӑван судлашатӑр, ҫитменнине тата Турра хисеплеменнисем умӗнче. 7 Пӗр-пӗринпе судлашас патнех ҫитни те сирӗншӗн мӑшкӑл-ҫке. Кӳрентернине чӑтсассӑн аванрах марччӗ-и? Ҫухату тӳсни аванрах марччӗ-и? 8 Апла пулинччӗ! Эсир хӑвӑр кӳрентеретӗр, ҫарататӑр. Кама-ха? Тӑванӑрсене. 9 Тӳрӗ мар ҫынсем Турӑ Патшалӑхне кӗреймессе пӗлместӗр-им? Ан улталанӑр: аскӑнсем те, кӗлеткесене пуҫҫапакансем те, пӗр-пӗрне улталакан мӑшӑрсем те, арҫынпа асакан арҫынсем те, 10 вӑрӑсем те, ҫӑткӑнсем те, ӗҫкӗҫсем те, сӑмахпа хӑртакансем те, хапсӑнчӑксем те Турӑ Патшалӑхне кӗреймӗҫ. 11 Ҫавнашкаллисем сирӗн хушшӑрта та пулнӑ. Анчах та эсир шыва кӗнӗ, сӑвапланса тасалнӑ, Иисус Христос Хуҫамӑр ячӗпе тата Туррӑмӑр Сывлӑшӗпе тӳрре тухнӑ.

## Ӳт-пӳпе те Турра мухтава кӑларӑр

12 Мана тем тума та юрать, анчах пурте усса каймасть. Ҫапла, мана тем тума та юрать, анчах манпа нимӗн те ан хуҫалантӑр. 13 Хырӑмшӑн апат

пултӑр, апатшӑн хырӑм пултӑр. Анчах та Хуҫамӑр
ӑна та, кӑна та пӗтерӗ. Ӳт-пӳ те аскӑнлӑх валли мар,
Хуҫамӑр валли; Хуҫамӑр вара – этем валли. 14 Турӑ
пирӗн Хуҫамӑра вилӗмрен чӗртнӗ, Хӑйӗн хӑвачӗпе
пире те чӗртӗ. 15 Сирӗн ӳт-пӗвӗрсем Христос ӳчӗн
пайӗсем пулнине пӗлместӗр-им? Мӗн, Христос ӳчӗн
пайӗсене илсе аскӑн хӗрарӑм ӳт-пӗвӗн пайӗсем
тумалла-им? Апла мар, паллах! 16 Аскӑн хӗрарӑмпа
ҫыхланакан унпа пӗр ӳт-пӳ пулнине эсир
пӗлместӗр-им? «Иккӗшӗ пӗр ӳт-пӳ пулӗҫ», – тенӗ-
ҫке-ха Ҫырнинче. 17 Хуҫамӑрпа пӗрлӗхлӗ пулакан
вара Хуҫамӑрпа пӗр чун-чӗмлӗ. 18 Аскӑнлӑхран
пӑрӑнӑр: этем тӑвакан кирек епле ҫылӑх та унӑн ӳт-
пӗвӗн тулашӗнче. Аскӑн ҫын вара хӑйӗн ӳт-пӗвне
хирӗҫ ҫылӑх тӑвать. 19 Сирӗн ӳт-пӗвӗрсем Святой
Сывлӑшӑн ҫурчӗ пулнине пӗлместӗр-им? Ӑшӑрта
Турӑран илнӗ Сывлӑш пурӑннӑран эсир ӗнтӗ хӑвӑр
та хӑвӑрӑн мар. 20 Сире хаклӑ хакпа тӳлесе илнӗ.
Ҫавӑнпа ӳт-пӗвӗрпе те, чунӑрпа та Турра мухтава
кӑларӑр: вӗсем Туррӑн.

### Арлӑ-арӑмлӑ пурӑнасси ҫинчен

7 Арҫын хӗрарӑмпа ҫывӑрса курмасан аванрах
тесе ҫырнӑччӗ эсир ман патӑма. Кунта ҫакна
каламалла. 2 Аскӑнлӑха путмалла ан пултӑр тесен,
кашни арҫыннӑн арӑмӗ пултӑр, кашни хӗрарӑмӑн –
упӑшки. 3 Упӑшкин арӑмне юратса пурӑнмалла,
ҫавӑн пекех арӑмӗ те упӑшкине юраттӑр. 4 Арӑмӗ
хӑйӗн ӳт-пӗвӗпе хуҫаланаймасть, унӑн хуҫи –
упӑшки. Ҫавнашкалах упӑшки те хӑйӗн ӳт-пӗвӗпе
хуҫаланаймасть, унӑн хуҫи – арӑмӗ. 5 Пӗр-пӗринчен
пӑрӑнса ан ҫӳрӗр. Пӑрӑнас пулсан та, пӗр-пӗринпе
калаҫса татӑлса, вӑхӑтлӑха, пӗтӗм чун хавалӗпе
типӗ тытасчӗ , кӗлтӑвасчӗ тесе пӑрӑнӑр. Унтан
каллех пӗрле пулӑр. Ахальлӗн, хӑвӑра тытса чарма
йывӑррине курса, сире шуйттан илӗртсе улталӗ.
6 Паллах, ҫакна эпӗ хушса мар, ирӗк парса калатӑп.
7 Ку тӗлӗшӗнчен манӑн пур ҫынна та хам пек тӑвас
килет, анчах та кашниех Турӑран тӗрлӗ пултарулӑх
илет: пӗри – апла, тепри – капла.
8 Мӑшӑрланманнисене, мӑшӑрсӑр юлнисене вара
хам пек хӑраххӑн пурӑнни аванрах тетӗп.
9 Чӑтаймаҫҫӗ пулсан, авланччӑр. Аскӑн шухӑшпа
ҫунса ҫӳриччен авланни аванрах.
10 Мӑшӑрланнисене вара эпӗ мар, Хуҫамӑр ҫапла
хушать: арӑмӗн упӑшкинчен уйӑрӑлмалла мар.
11 уйӑрӑлас пулсассӑн, урӑх качча каймалла мар е
упӑшкипех килӗшӳ тупмалла. Упӑшкин те арӑмне
пӑрахмалла мар. 12 Ыттисем пирки вара ҫакна
каламалла (куна Хуҫамӑр мар, эпӗ калатӑп): пӗр-пӗр
ӗненекен тӑванӑн арӑмӗ ӗненмен ҫын пулсан,
анчах та упӑшкипе пурӑнма килӗшет пулсан –
упӑшкин ӑна пӑрахмалла мар. 13 Ӗненекен арӑм та,
упӑшки ӗненмен ҫын пулсан, анчах арӑмӗпе
пурӑнма килӗшет пулсан, упӑшкине ан пӑрахтӑр.
14 Мӗншӗн тесен ӗненмен упӑшка арӑмӗн ӗненӗвӗ
урлӑ сӑвапланса тасалать; ӗненмен арӑм та
упӑшкин ӗненӗвӗ урлӑ сӑвапланса тасалать,
унсӑрӑн сирӗн ачӑрсем таса мар пулӗччӗҫ, капла –
таса. 15 Ӗненмен упӑшка е арӑм уйӑрӑласшӑн
пулсан, уйӑрӑлтӑр. Кун пек чухне ӗненекен
тӑванӑмӑра нимӗн те ҫыхса тӑмасть. Хуҫамӑр пире
килӗштерсе пурӑнма чӗнсе илнӗ. 16 Эй, арӑм! Кам
пӗлет, тен, эсӗ упӑшкуна ҫӑлӑн? Эй, упӑшки! Кам
пӗлет, тен, эсӗ арӑмна ҫӑлӑн?

### Хуҫамӑр палӑртнӑ пурӑнӑҫ

17 Эпӗ мӗн пур ӗненекен ушкӑнсене ҫапла
хушатӑп: кашнин Турӑ палӑртнӑ пек, хӑйне Хуҫамӑр
мӗнле халлӗн чӗнсе илнӗ, ҫавнашкалах
пурӑнмалла. 18 Кам та кам хӑйне Турӑ чӗнсе
иличчен ӳт кастарнӑ, ҫавӑ ӳт кастарнине ан
пытартӑр; кам та кам ӳт кастарман, ан кастартӑр.
19 Ӳт кастарни, ӳт кастарманни пекех, ниме те
пӗлтермест. Чи кирли – Турӑ пил-хушӑвӗсене
пӑхӑнса пурӑнасси. 20 Чӗнсе илнӗ чух хӑвӑр кам
пулнӑ, ҫаплипех юлӑр. 21 Хӑвна чӗнсе илнӗ чухне
эсӗ чура пулнӑ-и? Ан пӑшӑрхан. Ирӗклӗ пулмашкӑн
май килсессӗн те, хӑшӗ лайӑхраххине суйласа ил.
22 Мӗншӗн тесен Хуҫамӑр чӗнсе илнӗ чура вӑл –
Хуҫамӑрӑн ирӗке кӑларнӑ ҫынни. Ҫавнашкалах,
ирӗклӗ чух чӗнсе илни – Христос чури. 23 Сире
хаклӑ хакпа тӳлесе илнӗ, ҫын чури пулмашкӑн ан
килӗшӗр. 24 Эй, тӑвансем! Эппин, чӗнсе илнӗ чухне
сирӗнтен кашни кам пулнӑ, Турӑ умӗнче ҫаплипех
юлтӑр.

### Мӑшӑрланманнисем тата мӑшӑрсӑр юлнисем

25 Мӑшӑрланманнисем пирки вара Хуҫамӑр мӗн
хушса хӑварнӑ – пӗлместӗп. Мана Хуҫамӑр
Хӑйӗншӗн шанчӑклӑ пулмашкӑн ырӑлӑх панӑ,
ҫавӑнпа канаш паратӑп. 26 Ман шутӑмпа, хальхи
йывӑр саманара ҫынна мӑшӑрланмасӑр пурӑнни
аванрах. 27 Эсӗ арӑмлӑ-и? Эппин, уйӑрӑлма сӑлтав
ан шыра. Арӑмсӑр юлнӑ-и? Эппин, урӑх арӑм ан
шыра. 28 Тепӗр тесен, авланни ҫылӑх мар. Хӗр качча
кайни те ҫылӑх мар. Анчах та ку саманара арлӑ-
арӑмлӑ пурӑнакансене йывӑр килет, эпӗ сире ҫав
йывӑрлӑхран упрасшӑн. 29 Эй, тӑвансем! Эпӗ сире
ҫапла калатӑп: вӑхӑт нумаях юлмарӗ. Малашне
арӑмлисем арӑмсӑррисем пек пурӑнччӑр.
30 Йӗрекеннисем – йӗменнисем пек,
савӑнаканнисем – савӑнманнисем пек,
туянаканнисем – туянманнисем пек пулччӑр. 31 Ҫак
тӗнчери пурӑнӑҫпа пурӑнакансем тӗнчере
пурӑнман пек пулччӑр, мӗншӗн тесен ҫак тӗнче
сӑнарӗ иртсе каять. 32 Манӑн сире пурӑнӑҫ хуйхи-
суйхинчен хӑтарса хӑварас килет. Авланман ҫын
Хуҫамӑршӑн, Хуҫа Турра юрасшӑн тӑрӑшать.
33 Авланни пурӑнӑҫшӑн, арӑмне юрасшӑн
тӑрӑшать. Арӑмпа хӗр хушшинче те уйрӑмлӑх пур.
34 Ӳт-пӳ тӗлӗшӗнчен те, чун-чӗм тӗлӗшӗнчен те
сӑваплӑ пуласчӗ тесе, качча кайманни
Хуҫамӑршӑн, Хуҫа Турра юрасшӑн тӑрӑшать. Качча
кайни вара пурӑнӑҫшӑн, упӑшкине юрасшӑн

тăрăшать. 35 Ҫакна эпӗ сире ҫăварлăхласшăн
каламастăп. Сирӗн пӗтӗмпех йӗркеллӗ пултăр тесе,
пӗтӗм тимлӗхпе Хуҫа Турра чун-чӗререн парăнса
тăччăр тесе – сире усăллă пултăр тесе калатăп.
36 Кам хăйӗн качча кайма вăхăт ҫитнӗ хӗрӗ ватта
юлни намăс тесе шухăшлать, ҫав хăй тăвас тенӗ пек
тутăр, ҫылăха кӗмӗ. Ун пек хӗрсем качча кайччăр.
37 Ҫапах та кам иккӗленӳсӗр, камăн хăйӗн хӗрне
качча пама нуша ҫук, анчах та хăйӗн ирӗкӗпе хӗрне
качча памасăр упраса хăварас тет, ҫавă аван
тăвать. 38 Ҫавăнпа та хӗрне качча паракан аван
тăвать, качча паманни вара тата аванрах тăвать.
39 Саккун арăмне упăшки чӗрӗ чухне унпа пӗр
ҫыхăра пулма хушать. Упăшки вилсессӗн вара унăн
кама качча каяс килет, ҫавна кайма ирӗк пур.
Анчах та ҫынни Хуҫамăра ӗненекенскер пулмалла.
40 Ҫапах та, качча каймасан, ҫав хӗрарăм
телейлӗрех пулать. Паллах, ку манăн шухăш, анчах
манра та Турă Сывлăшӗ пур пулӗ тетӗп.

## Чӳк апат-ҫимӗҫӗ

8 Халӗ кӗлеткесене чӳклесе панă апат-ҫимӗҫ
пирки калам. Ун пирки хамăрăн пӗлӳ пурри
паллă ӗнтӗ, анчах та пӗлӳ пуҫа каҫăрттарать,
юратулăх вара аталантарать. 2 Кам мӗне те пулин
пӗлсе ҫитрӗм тет, ҫавă кирлӗ таран нимӗн те
пӗлмест. 3 Турă вара Хăйне юратакана пӗлет. 4 Ӗнтӗ
чӳклесе панă аш пирки. Тӗнчери пуҫҫапмалли
кӗлеткесем ним тӗшне те тăманнине, Пӗртен-пӗр
Турăсăр пуҫне урăххи ҫуккине эпир пӗлетпӗр. 5 Ҫӗр
ҫинче те, тӳпере те турă текенскерсем (вӗсем тата
хуҫасем пекех питӗ йышлă) пур теҫҫӗ пулсан,
6 пирӗн вара пӗр Атте Турă. Пӗтӗмпех Вăл пултарнă,
пурăнасса та эпир Уншăн пурăнатпăр. Пирӗн
пӗртен-пӗр Хуҫамăр – Иисус Христос. Пӗтӗмпех Ун
урлă пултаръннă, эпир те Вăл пуртан пурăнатпăр.
7 Анчах та пурте ҫакнашкал пӗлӳллӗ мар. Хăшӗ-
пӗрисем халӗ те кӗлеткесене турă вырăнне
хурассинчен хăпса ҫитмен-ха. Ҫавăнпа та чӳк
ҫимӗҫне ҫинӗ чухне ҫакă турра кӳнӗ ҫимӗҫ тесе
шутлаҫҫӗ, халсăр чунлăскерсем, хăйсене хăйсем
ирсӗрленнӗ пек туяҫҫӗ. 8 Анчах та апат-ҫимӗҫ пире
Турă патне кăшт та ҫывхартмасть. Ҫисессӗн те
пирӗн нимӗн те хутшăнмасть, ҫимесессӗн те эпир
нимӗн те ҫухатмастпăр. 9 Ҫапах та эсир чӳк ҫимӗҫне
тиркеменни халсăр чунлисемшӗн такăнса ӳкмелли
чул пуласран асăрханăр. 10 Эсӗ, пӗлӳллӗскер, чӳк
вырăнӗнче ҫисе ларнине курсан, халсăр
чунлисенчен хăшӗ-пӗрин чӳк ашне ҫисе пăхасси
килсе каймӗ-и? 11 Ӗнтӗ эсӗ пӗлни халсăр тăванна
пӗтермелли сăлтав пулӗ. Христос ăна ҫăлас тесе
вилнӗ вӗт-ха. 12 Ӗненекен тăванусене хирӗҫ ҫапла
майпа ҫылăх туса, вӗсен ахаль те халсăр чунне
амантса, эсир Христоса хирӗҫ те ҫылăх тăватăр.
13 Ҫавăнпа та, ӗненекен тăванăма апат-ҫимӗҫ
такăнтарса ӳкерет пулсан, ăна такăнтарас мар тесе,
пачах та аш ҫием мар.

## Апостол тивӗҫӗсем

9 Эпӗ апостол мар-им? Ирӗклӗ мар-им? Иисус
Христоса, хамăр Хуҫамăра, хам куҫпа хам
курман-им? Сире Христоспа пӗрлӗхлӗ тăваканни
эпӗ мар-им? 2 Тен, ыттисем мана апостол вырăнне
хумаҫҫӗ, анчах та сирӗншӗн эпӗ – апостол. Сире
эпӗ Хуҫамăрпа пӗрлӗхлӗ турăм, ҫакă эпӗ апостол
пулнине ӗнентерет.
3 Ҫакă манăн хама айăплакансенчен хӳтӗленни
пултăр. 4 Е ӗненекенсен пире тăрантармалла мар-
им? 5 Е пирӗн хамăр ҫумра ӗненекен тăванăмăр –
арăм – пулмалла мар-им? Ытти апостолсем те,
Хуҫамăрăн пӗртăванӗсем те, Кифа та авланнă-ҫке-
ха! 6 Е Варнавăпа иксӗмӗрӗн кăна хамăра хамăр
тăрантарса пурăнмалла-и? 7 Ҫар ҫынни хăйне хăй
тăрантарса пурăнни пур-и? Иҫӗм ҫырли лартаканӗ
ҫырлине ҫименни пур-и? Кӗтӳ кӗтекенӗ сӗт ӗҫменни
пур-и? 8 Ҫакна эпӗ этемле шухăшласа кăна калатăп-
и? Саккун та ҫавнах каламасть-и вара? 9 Моисей
саккунӗнче ҫапла ҫырнă: «Авăн ашакан вăкăрăн
ҫăварне ан хупла». Ҫакна Турă вăкăрсемшӗн
кулянниле калана тетӗр-и? 10 Е ҫак сăмахсене
пирӗншӗн кулянса калана? Паллах, ҫакна йăлтах
пирӗншӗн калана, мӗншӗн тесен хăйӗн пайне
илессе шанса суха тăваканăн сухаламалла, кӗлте
ҫапаканăн ҫапмалла. 11 Эпир сирӗн ăша чун-чӗм
вăрлăхне акрăмăр, эппин сирӗнтен кӗлеткене
усрамалăх пухса илни ытлашши пулӗ-и?
12 Ыттисем сирӗн патăрта ҫавнашкал ирӗкпе усă
кураҫҫӗ пулсан, пирӗн ирӗкӗмӗр тата ытларах мар-
и? Анчах та эпир ҫав ирӗкпе нихăҫан та усă
курмарăмăр. Христосăн Ырă Хыпарне пӗлтерме
нимӗн те ан чăрмантартăр тесе мӗн пуррипе
ҫырлахса пурăнатпăр. 13 Кӗлӗ ҫуртӗнче ӗҫлекенсем
кӗлӗ ҫурчӗн шучӗпе пурăннине пӗлместӗр-им?
Парне вырăнӗ умӗнче ӗҫлесе тăракансен вара
парнелӗхе кӳнин пӗр пайне илме ирӗк пуррине
пӗлместӗр-им эсир? 14 Ырă Хыпар пӗлтерекенсем
ӳкӗтлесе-вӗрентсе хăйсене пурăнмалăх ӗҫлесе
илччӗр тесе Хуҫамăр та хушса хăварнă. 15 Анчах та
эпӗ ҫав ҫăмăллăхсемпе пӗринпе те нихăҫан та усă
курмарăм. Ҫырасса та ҫăмăллăх ыйтса ҫырмастăп.
Мухтанмалли сăлтавăмсăр тăрса юличчен эпӗ
вилме те хатӗр. 16 Ырă Хыпар пӗлтерни вăл –
мухтанмалли япала мар, манăн тивӗҫӗм.
Пӗлтерместӗп пулсан – хуйхă пултăр мана! 17 Ҫак
ӗҫе эпӗ хам ирӗкпе тăватăп пулсан, паллах, мана
тӳлемелле. Енчен те хам ирӗкпе тумастăп пулсан,
шанса панă ӗҫӗм вара Турă умӗнчи тивӗҫӗм пулать.
18 Мухтанмалли сăлтавăм, тӳлевӗм мӗн вара? Вăл ак
ҫакă: Христос ҫинчен эпӗ Ырă Хыпар тӳлевсӗрех
саратăп, ҫав ӗҫшӗн хама тивӗҫлине илместӗп.
19 Ирӗклӗ ҫын пулсан та, тата ытларах ҫынна
ҫăласчӗ тесе, эпӗ пуриншӗн те чура пулса тăтăм.
20 Иудейсене Христос майлă ҫавăрас тесе эпӗ
иудейсемпе иудей пек пултăм, Моисей саккунне
пăхăнакансене ҫăлас тесе саккуна пăхăнакан пек

пултӑм. [21] Саккуншӑн юттисене ҫӑлас тесе
вӗсемшӗн хам та саккуншӑн ют пек пултӑм. Ҫав
хушӑрах Моисей саккунне Турӑ умӗнче юта
хумарӑм, пурӑнасса вара Христос саккунӗпе
пурӑнтӑм. [22] Халсӑр чунлисене ҫавӑрас тесе
халсӑррисем пек пултӑм. Май пур таран хӑшне те
пулин ҫӑлса хӑварасчӗ тесе эпӗ пуриншӗн те вӗсем
пек пултӑм. [23] Ҫакна эпӗ Ырӑ Хыпаршӑн, унӑн
ырӑлӑхне ыттисемпе пӗрле пайласчӗ тесе тӑватӑп.
[24] Ӑмӑртура пурте чупаҫҫӗ, анчах та пӗрне кӑна
парне тивӗҫнине пӗлместӗр-им эсир? Ҫав парнене
ҫӗнсе илес тесе эсир те тӑрӑшӑр. [25] Ӑмӑртӑва
хутшӑнмашкӑн пурте тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ, ӑна-
кӑна питӗ уяса пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем шанакан-типекен
пуҫ кӑшӑлӗ ҫӗнсе илесшӗн, эпир – шанманнине.
[26] Ҫавӑнпа та эпӗ тӗллевсӗр чупмастӑп; аллӑмсемпе
сывлӑшра усӑсӑр сулкалашмастӑп, чӑнласах
кӗрешетӗп. [27] Ҫапах та эпӗ кӗлеткеме хама
итлеттерсе пӑхӑнтаратӑп. Ҫакна эпӗ ыттисене Ырӑ
Хыпаршӑн кӗрешме ӳкӗтле-ӳкӗтле хамӑн ҫав
кӗрешӗве юрӑхсӑр пулас марччӗ тесе тӑватӑп.

### Кӗлеткесене пуҫҫапасран асӑрхаттарни

10 Эй, тӑвансем! Ман сире ҫакна пӗлтерес
килет: пирӗн мӑн асаттесем пурте пӗлӗт
витӗмӗпе пынӑ, сирӗлнӗ тинӗс тӗпӗпе каҫнӑ.
[2] Пӗлӗтпе тата тинӗс шывӗпе тӗне кӗрсе вӗсем
пурте Моисейпа пӗрлӗхлӗ пулса тӑнӑ. [3] Вӗсем пурте
чун-чӗмӗн пӗр апатне ҫинӗ. [4] Вӗсем пурте чун-
чӗмӗн пӗр ӗҫмине ӗҫнӗ: ту чулӗнчен ҫӑлкуҫ тапса
тӑнӑ, чун-чӗм чулӗ вӗсемпе пӗрлех пынӑ. Ҫав чул
вӑл Христос пулнӑ. [5] Анчах та вӗсен хушшинче
Турра юрӑхлӑ пурӑнакансем сахал пулнӑ, ҫавӑнпа
та ытларахӑшӗ пуш хиртех выртса юлнӑ. [6] Эпир те
мӑн асаттесем пекех усаллине сӑхланасран Турӑ
пире ҫакнашкал тӗслӗхсемпе асӑрхаттарнӑ.
[7] Вӗсенчен хӑшӗ-пӗри пек кӗлеткесене ан пуҫҫапӑр.
Ҫырнинче вӗсем пирки ҫапла каланӑ: «Халӑх ӗҫме-
ҫиме ларнӑ, унтан вӑййа тухнӑ». [8] Вӗсенчен хӑшӗ-
пӗри пек аскӑн та пӑсӑк пулар мар. Пӑсӑк
пурӑннӑран вӗсенчен ҫирӗм виҫӗ пинӗшӗ пӗр
кунтах пӗтнӗ. [9] Христоса тӗрӗслер мар. Вӗсенчен
хӑшӗ-пӗри ҫапла хӑтланнӑ та – ҫӗленсем сӑхнипе
вилсе пӗтнӗ. [10] Вӗсенчен хӑшӗ-пӗри пек ан
ӳпкелешӗр. Вӗсем ӳпкелешнӗ те – вӗсене чунилли
пӗтернӗ. [11] Ҫаксем пурте малашлӑх сӑнарӗсем
пулнӑ. Пире, тӗнче пӗтес вӑхӑтра пурӑнакансене,
ӑса кӗртмешкӗн ҫав тӗслӗхсем ҫинчен ҫырса
хӑварнӑ та ӗнтӗ. [12] Ҫавӑнпа хӑйне ҫирӗп тӑратӑп
тесе шухӑшлакан ӳкесрен асӑрхантӑр. [13] Эсир
куракан тӗрӗслев этем тӳсмелӗх кӑна. Турра шанӑр.
Вӑл сирӗн пуҫӑр ҫине чӑтма пултарнинчен ытла
тӗрӗслев яма хушмӗ. Тӗрӗсленӗ чухне чӑтса
ирттермелӗх сире ҫӑмӑллӑх та парӗ.
[14] Ҫапла вара, савнӑ тӑвансем, кӗлеткесене
пуҫҫапассинчен пӑрӑнса ҫӳрӗр. [15] Сирӗнпе эпӗ ӑслӑ-
тӑнлӑ ҫынсемпе калаҫнӑ пек калаҫатӑп. Мӗн калани
пирки вара хӑвӑр шухӑшлӑр. [16] Эпир пиллӗх
куркинчен пиллесе ӗҫни Христос Юнӗпе хутшӑнни
пулмасть-и вара? Хамӑр хуҫса ҫиекен ҫӑкӑра ҫини
Христос Ӳчӗпе пӗрлешни пулмасть-и вара?
[17] Ҫӑкӑрӗ пӗрре, ҫав ҫӑкӑра валеҫсе ҫинӗрен эпир
те нумаййӑн пӗр ӳт пулса тӑратпӑр. [18] Израиль
йӑхӗнчисене пӑхӑр-ха. Парне вырӑнӗ ҫинчи ҫимӗҫе
ҫисе вӗсем парне кӳрес ӗҫе хутшӑнмаҫҫӗ-и? [19] Мӗн
каласшӑн-ха эпӗ? Пуҫҫапмалли кӗлетке е чӳк
ҫимӗҫӗ мӗне те пулин пӗлтерет тесшӗн-и?
[20] Паллах, апла мар. Урӑх халӑхсем парнине Турра
мар, усал сывлӑшсене кӳреҫҫӗ тесшӗн. Манӑн вара
сире усал сывлӑшсемпе хутшӑнтарас килмест.
[21] Хуҫа Турӑ куркинчен ӗҫнӗ хушӑрах эсир усал
сывлӑш куркинчен те ӗҫеймӗр. Хуҫа Турӑ сӗтелӗ
хушшинче ларнӑ вӑхӑтрах усал сывлӑш сӗтелӗ
хушшинче хӑналанаймӑр. [22] Хуҫа Туррӑмӑра пирӗн
кӗвӗҫтерсе тарӑхтарас килет-ши? Эпир Унран
вӑйлӑрах-им вара?

### Пӗтӗмпех Турӑ мухтавӗшӗн тӑвар

[23] Манӑн тем тума та ирӗк пур, анчах пурте усӑллӑ
мар. Манӑн тем тума та ирӗк пур, анчах пурте
ырӑлӑхлӑ мар. [24] Никам та хӑйшӗн кӑна ан
тӑрӑштӑр, ҫынна усӑ тӑвасчӗ тесе тимлетӗр. [25] Таса
чунлӑ юлас тесен, сутуҫӑран илнӗ аша пӗр
тиркемесӗр ҫиййӗр. [26] Мӗншӗн тесен ҫак ҫӗр те, ҫӗр
ҫинчи те пӗтӗмпех Хуҫа Туррӑн. [27] Калӑпӑр,
ӗненмен ҫынсенчен кам та пулин сире хӑнана
чӗнет. Эсир кайма килӗшетӗр. Таса чунлӑ юлас
тесен мӗн сӗннине пӗр тиркемесӗр ҫиййӗр. [28] Анчах
кам та пулин сире: «Ку чӳк ҫимӗҫӗ», – тесе каласан,
ан ҫиййӗр. Ҫапла туни сӗнекен ҫыншӑн та, чуна таса
хӑвармашкӑн та кирлӗ. Мӗншӗн тесен ҫак ҫӗр те,
ҫӗр ҫинчи те пӗтӗмпех Хуҫа Туррӑн . [29] Чуна таса
хӑвармашкӑн тесе эпӗ сирӗн пирки мар, ҫав ҫын
пирки калатӑп. Манӑн ирӗклӗхӗм ҫын чунӗ умӗнче
яваплӑ мар. [30] Эпӗ Турра тав туса ҫиетӗп пулсан, тав
туса ҫинӗ ҫимӗҫшӗн мана мӗншӗн хурламалла?
[31] Ҫапла вара, ӗҫетӗр-и, ҫиетӗр-и е мӗн те пулин
урӑххине тӑватӑр-и – пӗтӗмпех Турӑ мухтавӗшӗн
тӑвӑр. [32] Иудейсемшӗн те, грексемшӗн те, Турӑ
чиркӗвӗшӗн те ҫылӑха кӗмелли сӑлтав пулас
марччӗ тесе пурӑнӑр. [33] Манашкал пулӑр. Эпӗ пур
тӗлӗшӗнчен те пурне те юрама тӑрӑшатӑп.
Нумайӑшӗ ҫӑлӑнччӑр тесе, хамшӑн мар, ытти
ҫынсен ырӑлӑхӗшӗн тӑрӑшатӑп.
11 Эпӗ Христосран тӗслӗх илнӗ пек, эсир те
манран тӗслӗх илӗр.

### Кӗлӗре ҫӳҫ-пуҫа витесси

[2] Эй, тӑвансем! Эпӗ мӗн каланине йӑлтах асра
тытнӑшӑн, эпӗ вӗрентсе хӑварнӑ Хуҫа Турӑ йӑли-
йӗркипе пурӑннӑшӑн сире ырлатӑп. [3] Тата сире
ҫакна пӗлтерессӗм килет: кирек епле арҫыншӑн та
Христос пуҫ пулса тӑрать, упӑшки те арӑмӗшӗн –
пуҫ, Турӑ та Христосшӑн – пуҫ. [4] Пуҫне тӑхӑнса
кӗлтӑвакан е пророкла сӑмах калакан кирек епле

арçын та хăйĕн пуçне намăс кăтартать. 5 Çӳç-пуçне
витмесĕр кĕлтăвакан е пророкла сăмах калакан
кирек епле хĕрарăм та хăйĕн пуçне намăс
кăтартать. Вăл çапла туни çӳçне хыртарса янипе
пĕрех. 6 Хĕрарăм çӳç-пуçне витмест пулсан, эппин
çӳçне кастартăр. Çӳç кастарма е хыртарма вăтанать
пулсан, эппин çӳç-пуçне хуплатăр. 7 Арçыннăн
кĕлĕре çара пуçăн пулмалла, мĕншĕн тесен вăл
Турă сăнарĕпе мухтавĕ. Хĕрарăм вара – упăшкин
мухтавĕ. 8 Арçынна хĕрарăмран пултарман,
хĕрарăма арçынтан пултарнă. 9 Арçынна
хĕрарăмшăн туман, хĕрарăма арçыншăн тунă.
10 Çавăнпа та хĕрарăмăн хăйĕн пуçне пăхăну
паллипе витмелле. Тата унăн çакна ангелсене
кăтартмашкăн тумалла. 11 Тепĕр тесен, Хуçамăр
вĕрентнĕ тăрăх, упăшки арăмĕсĕр, арăмĕ
упăшкисĕр ним тĕшне те тăмасть. 12 Мĕншĕн тесен
малтанхи хĕрарăма арçынтан тунă пекех, арçын та
хĕрарăмран çуралать. Пурне те вара Турă пултарнă.
13 Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха, витмен пуçпа Турра
кĕлтуни хĕрарăма килĕшӳллĕ-и? 14 Çӳçне-пуçне
ӳстерсе янă арçын хисепрен тухни çинчен çут
çанталăк хăех калать. 15 Хĕрарăмшăн вара çӳç
ӳстерни – хисеп, çут çанталăк хĕрарăма виткĕч
вырăнне вăрăм çӳç панă. 16 Хампа тавлашас текене
вара çакна кăна калатăп: пирĕн патăрта та, Туррăн
ытти чиркĕвĕсенче те унашкал йăла çук.

## Хуçамăрăн аслă каçхи апачĕ çинчен

17 Ĕнтĕ, сире вĕрентсе, хам ырламанни çинчен
калам. Сирĕн пухăвăрсем сире уссинчен ытларах
сиен кӳреççĕ. 18 Чи малтанах, хам мĕн илтни
çинчен: чиркӳ пухăвне пуçтарăнсан эсир пĕр-
пĕринпе харкашатăр иккен. Çакна эпĕ пăртак
ĕненетĕп те. 19 Мĕншĕн тесен чăн-чăн ĕненекенсем
палăрмашкăн сирĕн хушшăрта тĕрлĕ шухăшлăх
пулмаллах. 20 Тата çакна каламалла: эсир пĕрле
пуçтарăнатăр пулин те, çакна Хуçамăрăн аслă каçхи
апатне туни теме çук. 21 Мĕншĕн тесен кашниех
харпăр хăй апатне часрах çисе ярасшăн. Çапла
вара пĕри выçах юлать, тепри тутă та хĕрĕнкĕ.
22 Сирĕн килĕрсем çук-им? Килте ĕçсе-çиейместĕр-
им? Е Туррăн чиркĕвне ним вырăнне те хумастăр-и?
Çук çынсене хур тăвас тетĕр-и? Мĕнех калам? Сире
çакăншăн ырлам-и? Ырламăп.
23 Çак йăлана эпĕ Хуçамăртан Хăйĕнчен вĕрентĕм,
кайран сире вĕрентрĕм. Хăйне сутнă каç Иисус
Хуçамăр çăкăр илнĕ те, 24 Турра тав туса, çăкăра
хуçнă. Унтан Вăл çапла каланă: «Илĕр, çиййĕр, çакă –
сирĕншĕн хуçăлакан Манăн Ӳт-пĕвĕм. Малашне те
Мана аса илсе çак йăлана тăвăр». 25 Каçхи апат
хыççăн, çавнашкалах, Вăл курка илнĕ те çапла
каланă: «Çак курка – Манăн Юнăмпа çирĕплетнĕ
Çĕнĕ Халал. Ăна ĕçнĕ чух кирек хăçан та Мана аса
илсе çак йăлана тăвăр». 26 Ĕнтĕ эсир çав çăкăра
çимессерен, çав куркана ĕçмессерен Хуçамăр тепре
киличченех Вăл вилни çинчен хыпарлатăр.

## Аслă каçхи апата тивĕççĕр туни

27 Çапла вара, Хуçамăрăн çăкăрне тивĕççĕр
çиекен, Хуçамăрăн куркине тивĕççĕр ĕçекен çын
Хуçамăрăн Ӳчĕпе Юнне хирĕç çылăх тăвать.
28 Малтан çын хăйне хăй тĕрĕслесе пăхтăр, унтан
тин çав çăкăра çитĕр, çав куркана ĕçтĕр. 29 Кам
тивĕççĕр ĕçсе çиет, çав хăйне айăплав илмешкĕн
ĕçсе çиет, мĕншĕн тесен вăл Хуçамăрăн Ӳчĕ çинчен
шухăшламасть. 30 Акă мĕншĕн сирĕн хушшăрта
халсăррисем, чирлисем нумай; вилекенсем те
йышлă. 31 Эпир хамăра хамăр хаклама пултарсан
Турă пире айăпламĕччĕ. 32 Пире хак параканĕ вара
– Турă. Ытти пĕтĕм тĕнчепе пĕрле суд умне тăрас
мар тесессĕн Хуçа Турă айăплавне пирĕн чăтмалла.
33 Çавăнпа та, тăванăмсем, аслă каçхи апата
пуçтарăннă чухне пĕр-пĕрне кĕтĕр. 34 Турă сирĕн
пухăва ан айăплатăр тесен çиес текен килте çитĕр.
Ыттине хам пырсан йĕркене кĕртĕп.

## Турă Сывлăшĕн парнисем

12 Эй, тăвансем! Манăн сире Турă Сывлăшĕн
парнисем пирки пĕлтермесĕр хăварас
килмест. 2 Чăн Турра пĕлмен чухне пуççапмалли
чĕлхесĕр кĕлеткесем патне сире вăйпах темскер
ертсе кайнине хăвăрах пĕлетĕр. 3 Çавăнпа та сире
çакна калатăп: Турă Сывлăшĕ хавхалантарнипе
калаçакансенчен пĕри те Иисуса ылханмĕ. Святой
Сывлăш хавхалантарнипе калаçакансемсĕр пуçне
Иисуса Хуçам тесе никам та калаймĕ. 4 Çынсене
тĕрлĕрен пултарулăх панă, анчах та Сывлăш –
пĕрре. 5 Турăшăн та çынсем тĕрлĕрен тăрăшаççĕ,
анчах та Хуçа Турă – пĕрре. 6 Çынсен ĕçĕсем те
тĕрлĕрен, анчах пурин ăшĕнче те пурне те туса
тăракан Турă – пĕрре. 7 Сывлăш кашни çыннах
пĕрлехи ырлăхшăн тăрăшмашкăн пултарулăх панă.
8 Пĕрне Сывлăш урлă ăслăлăх сăмахне панă,
тепĕрне çав Сывлăшах пĕлӳлĕх сăмахне панă.
9 Пĕрне Сывлăш урлă ĕненес пултарулăх панă,
тепĕрне çав Сывлăшах сыватас пултарулăх панă.
10 Хăшне хăват кăтартма, хăшне пророкла калаçма,
хăшне ырă тата усал сывлăшсене уйăрма, хăшне
тĕрлĕ чĕлхепе калаçма, хăшне тĕрлĕ чĕлхепе
каланине ăнлантарма пултарулăх панă. 11 Çаксене
йăлтах пĕр Сывлăш туса тăрать; Вăл, Хăйне кирлĕ
пек, кашни çыннах уйрăм пултарулăх парать.

## Эпир – пĕр ӳт-пӳ

12 Пĕр ӳт-пĕвех нумай пайсенчен тăрать, нумай
пулин те, пурте пĕрле пĕр ӳт-пӳ тăваççĕ. Христос та
çавнашкалах. 13 Мĕншĕн тесен пĕр Сывлăшпа тĕне
кĕрсе эпир пурте – иудейсемпе грексем те,
чурасемпе ирĕклисем те – пĕр ӳт-пӳ пултăмăр, пĕр
Сывлăшпа тултăмăр. 14 Ӳт-пӳ вара пĕр пайран мар,
нумай пайсенчен тăрать. 15 «Эпĕ алă мар, эппин ӳт-
пĕвĕн те мар», – тесе каланăшăн ура ӳт-пӳ пайĕ
пулма пăрахать-и? 16 «Эпĕ куç мар, эппин ӳт-пĕвĕн

те мар», – тесе каланăшăн хăлха ӳт-пӳ пайĕ пулма
пăрахать-и? 17 Пĕтĕм кĕлетке курмалли пайран
тăрсассăн, мĕнпе илтĕн? Пĕтĕм кĕлетке илтмелли
пайран тăрсассăн, мĕнпе шăршă пĕлĕн? 18 Анчах та
Турă ӳт-пӳ пайĕсене Хăйне кирлĕ пек пĕр ӳт-пĕве
чăмăртаса вырнаçтарнă. 19 Пурте ӳт-пĕвĕн пĕр пайĕ
пулас пулсассăн, ӳт-пĕвĕ хăй ăçта пулĕччĕ? 20 Капла
вара ӳт-пӳ пайĕсем нумай, ӳт-пĕвĕ – пĕрре. 21 «Эсĕ
мана кирлĕ мар», – тесе куç алла калаймĕ. Пуç та
урана: «Эсĕ мана кирлĕ мар», – тееймĕ. 22 Пачах та
урăхла! Чи хавшак пек туйăнакан ӳт-пӳ пайĕсем
кирлĕрех те! 23 Чаплă мар текен ӳт-пӳ пайĕсене
вара эпир питĕ асăрхаса упратпăр. 24 Илемсĕр,
намăс вырăнсене тирпейлĕн хуплатпăр, илемлине
апла туни кирлĕ те мар. Анчах та Турă, тивĕçсĕр
текеннисемшĕн ытларах тăрăштарса, пĕтĕм ӳт-пĕве
шайлаштарнă. 25 Çакна Вăл ӳт-пӳ пайĕсен пĕр-
пĕрне уйăрасси ан пултăр, пур пайĕ те пĕр-
пĕриншĕн пĕрешкел тăрăштăр тесе тунă.
26 Çавăнпа та ӳт-пĕвĕн пĕр-пĕр пайĕ асаплансан
ыттисем те асапланаççĕ, пĕр-пĕр пайĕ хисеплĕ
пулсан ыттисем те савăнаççĕ.

27 Эсир вара – Христос ӳт-пĕвĕ, уйрăмшарăн – ӳт-
пӳ пайĕсем. 28 Ĕненекен ушкăнра Турă хăшне
апостол тунă, хăшне – пророк, тата тепĕрне –
вĕрентекен. Турă хăшне хăват кăтартма вăй панă,
хăшне сыватас пултарулăх панă. Çавнашкалах
хăшне пулăшас пултарулăх, хăшне ертсе пырас
пултарулăх, тата теприсене тĕрлĕ чĕлхепе калаçас
пултарулăх панă. 29 Пурте апостол-и? Пурте пророк-
и? Пурте вĕрентекен-и? Пурте хăват кăтартакан-и?
30 Пурин те сыватас пултарулăх пур-и? Пурте тĕрлĕ
чĕлхесемпе калаçаççĕ-и? Тĕрлĕ чĕлхепе каланине
пурте ăнлантарса параяççĕ-и? 31 Çапах та пурте тата
пысăкрах пултарулăх илесчĕ тесе тăрăшăр, эпĕ
вара сире тата лайăхрах çул-йĕр кăтартса парăп.

### Юратулăх

13 Этем чĕлхипе калаçсан та, ангел чĕлхипе
калаçсан та, хам юратулăхсăр пулсан, эппин
эпĕ – янăракан чан е чăнкăртатакан кимвал çеç.
2 Манăн пророк пултарулăхĕ пур пулсан та, пĕтĕм
вăрттăнлăхпа пĕлĕве ăнкаратăп пулсан та, тусене
вырăнтан куçармалăх çирĕп ĕненӳллĕ пулсан та,
хам юратулăхсăр пулсан, эппин эпĕ ним тĕшне те
тăмастăп. 3 Эпĕ пĕтĕм пурлăхăма валеçсе пĕтерсен
те, ӳт-пĕвĕме вута пăрахма килĕшсен те, хам
юратулăхсăр пулсан, эппин мана çавăнтан ним усси
те пулас çук.

4 Юратулăх çирĕп тӳсĕмлĕ, хĕрхенӳллĕ; юратулăх
кĕвĕçмест, вĕçкĕнленмест, мăнкăмăлланмасть,
5 сĕмсĕрленмест, хăйшĕн кăна тăрăшмасть,
тарăхмасть, усаллине асра тытмасть; 6 суяшăн мар,
чăнлăхшăн савăнать. 7 Юратулăх йăлтах каçарать,
пурне те ĕненет, яланах шанать, теме те тӳссе
ирттерет. 8 Пророкла каланисем вĕçленĕç,
чĕлхесем çухалĕç, пĕлӳ пăрахăçа тухĕ – юратулăх
нихăçан та пĕтмĕ. 9 Мĕншĕн тесен эпир кăштах
пĕлкелетпĕр, кăштах пророкла калаçкалатпăр; 10 чи
пахи килсен вара кăштаххи пăрахăçланĕ. 11 Ача
чухне эпĕ ачалла калаçаттăм, ачалла шухăшлаттăм,
ачалла ăнланаттăм. Ар çулне çитсессĕн ача-пăча
шухăшне пăрахрăм. 12 Халĕ эпир тĕксĕм кантăк
витĕр курнă пек уçăмсăррăн куратпăр, анчах та
пĕррехинче Турра уççăн, куçа-куçăн курăпăр. Халĕ
эпĕ кăшт кăна пĕлкелетĕп, ун чухне вара эпĕ Турра
Вăл хама пĕлнĕ пекех пĕлĕп. 13 Ĕнтĕ çаксем
виççĕшĕ: ĕненӳ, шанчăк, юратулăх – ĕмĕр-ĕмĕр
пулĕç, анчах та аслăраххи – юратулăх.

### Чĕлхесем тата пророкла калаçасси

14 Юратулăх патне ăнтăлăр. Турă Сывлăшĕн
парнисене, уйрăммăнах пророкла калаçас
пултарулăха, илме тăрăшăр. 2 Пĕлмен чĕлхепе
калаçакан вара çынсемпе мар, Турăпа калаçать.
Ăна никам та ăнланмасть, мĕншĕн тесен
вăрттăнлăха вăл Турă Сывлăшĕн витĕмĕпе
пĕлтерет. 3 Пророкла калаçакан вара çынсене
ӳкĕтлесе, хавхалантарса, лăплантарса калаçать.
4 Пĕлмен чĕлхепе калаçакан хăйне хăй çирĕплетет,
пророкла калаçакан вара ĕненекен ушкăна
çирĕплетет. 5 Манăн сире пурне те çапла пултарас
килет: тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçни аван, пророкла
калаçма пĕлни тата аванрах. Пророкла калаçакан
тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçакантан çӳлерех тăрать.
Чăн та, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан, чиркĕве
çирĕплетес тесе, хăй сăмахĕсене ăнлантарса
парсассăн пророкла калаçаканпа танлашма
пултарать.

6 Эй, тăванăмсем! Калăпăр, эпĕ сирĕн патăра
пырсан пĕлмен чĕлхесемпе калаçăп. Çав хушăрах
эпĕ сире Турă вăрттăнлăхне уçса памасан, пĕлӳ
памасан, пророкла калаçмасан, вĕрентмесен сире
мĕн усси пулĕ? 7 Тĕслĕх вырăнне кĕвĕ каламалли
чунсăр хатĕрсене – шăхличе е кĕслене – илер.
Шăхличпе кĕсле уçăмсăр сасăсем кăлараççĕ пулсан,
вĕсемпе мĕнле çемĕ каланине епле пĕлеес?
8 Уçăмлă мар труба сассипе кам çапăçăва
хатĕрленĕ? 9 Çавнашкалах эсир калакан сăмахсем
ăнланмалла мар пулсан, мĕн каланине çынсем
епле пĕлчĕр? Ку вăл çиле калани кăна пулать.
10 Тĕнчере мĕн чухлĕ сăмах! Пĕлтерĕшсĕрри вара
пĕри те çук. 11 Анчах та эпĕ хампа калаçаканăн
сăмахĕсем мĕне пĕлтернине ăнланмастăп пулсан,
эпĕ уншăн ют халăх çынни пулатăп. Вăл та маншăн
çавнашкалах. 12 Эсир те, Турă Сывлăшĕн парнисене
илме ăнтăлса, чиркĕве çирĕплетмешкĕн вĕсене
ытлăн-çитлĕн илме тăрăшăр. 13 Çавăнпа та пĕлмен
чĕлхепе калаçакан çын ăнлантарса пама
пултарулăх илесчĕ тесе кĕлтутăр. 14 Мĕншĕн тесен
пĕлмен чĕлхепе кĕлтунă чухне чунăм кĕлтăвать
пулин те, ăсăм кĕлтума хутшăнмасть. 15 Апла мĕн
тăвам-ха? Турра чунăмпа кĕлтăвам, ăсăмпа та
кĕлтăвам. Турра чунăмпа мухтаса юрлам, ăсăмпа та
мухтаса юрлам. 16 Енчен те эсĕ Турра чунтан
мухтаса тав тăватăн пулсан та, сана итлесе тăракан

ахаль çын: «чăнах та, çапла» тееймĕ. Эсĕ мĕн
каланине вăл ăнланмасть-çке-ха. 17 Çапла вара, эсĕ
Турра тем тери мухтаса кĕлтусан та, çакă ыттисене
усса пымасть. 18 Тавах Туррăма! Пĕлмен чĕлхесемпе
калаçма эпĕ сирĕнтен пуринчен те ытларах
пултаратăп. 19 Анчах та эпĕ, ыттисене ăс парас тесе,
вĕсем пĕлмен чĕлхепе чиркӳре пин-пин сăмах
каличчен ăнланмалла пилĕк сăмах калам.
20 Эй, тăвансем! Ача ăслĕ ан пулăр. Усалли
тĕлĕшĕнчен ача пек пулăр, анчах та ăс-хакăл
тĕлĕшĕнчен çитĕнсе çитнисем пек пулăр.
21 Саккунра çапла çырнă: «„Çак халăхпа ют чĕлхепе,
урăх халăх çыннисен чĕлхи-çăварĕпе калаçăп, ун
чухне те вĕсем Мана итлемĕç“, – тет Хуçа Турă».
22 Çапла вара, тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçни –
ĕненекенсем валли мар, ĕненменнисем валли Турă
янă паллă. Пророкла калаçни вара – ĕненменнисем
валли мар, ĕненекенсем валли Турă янă паллă.
23 Пĕтĕм чиркӳ пĕрле пуçтарăнса пĕлмен
чĕлхесемпе калаçнă чухне унта ахаль çынсем е
ĕненменнисем пырса кĕрес пулсан мĕн калĕç?
«Кусем ăсран тайăлнă», – темĕç-и? 24 Енчен те пурте
пророкла калаçас пулсан вара унта ахаль çын е
ĕненменни пырса кĕрсен хăйне питлесе, айăпласа
каланине илтĕ. 25 Çапла майпа унăн вăрттăн
шухăш-кăмăлĕ палăрĕ, вăл Турра чĕркуçленсе
пуççапĕ те: «Турă чăнласах та сирĕнпе», – тейĕ.

### Мĕн туни йăлтах йĕркеллĕ пултăр

26 Çапла вара, тăвансем, мĕн тумалла-ха? Акă эсир
чиркӳ пухăвне пуçтарăнатăр. Пĕри псалом ăсти,
тепри ӳкĕт ăсти, тата тепри тĕрлĕ чĕлхе ăсти.
Хăшĕн Турă вăрттăнлăхне уçма, теприн ăнлантарса
пама пултарулăх пур. Пурте вĕсем чиркĕве
çирĕплетмешкĕн усăллă пулччăр. 27 Хăшĕ-пĕри
пĕлмен чĕлхепе калаçать пулсассăн, иккĕн, е чи
нумаййи – виççĕн, черетпе калаçчăр, пĕри
ăнлантарса патăр. 28 Ăнлантаракан çук пулсан,
вĕсем чиркӳре шăпăрт тăччăр, хăйсен ăшĕнче
Турăпа калаçчăр. 29 Çавнашкалах пророкла
калаçакансем те иккĕн е виççĕн калаçчăр, ыттисем
вара мĕн илтнине сӳтсе явччăр. 30 Ларакансенчен
пĕрне Турă вăрттăнлăхĕ уçăлса кайсассăн, малтан
калаçаканĕ чарăнтăр. 31 Пурте вĕренме,
хастарланма пултарччăр тесен эсир черетпе
пророкла калаçма пултаратăр вĕт-ха. 32 Хăйсене
хавхалану кӳрекен сывлăшсене пророксем
итлеттерме пултараççĕ. 33 Мĕншĕн тесен Турă вăл –
хирĕçӳлĕх Турри мар, канăçлăх Турри.
Ĕненекенсем пуçтарăнакан ытти чиркӳсенчи
пекех 34 сирĕн хĕрарăмсем те чиркӳре чĕнмесĕр
тăччăр. Вĕсен калаçмалла мар, саккун хушнă пек,
пăхăнмалла. 35 Мĕн те пулин пĕлес тесен ун çинчен
вĕсем упăшкисенчен килте ыйтчăр. Хĕрарăм
чиркӳре калаçни килĕшӳллĕ мар. 36 Тăвансем! Турă
сăмахĕ сирĕнтен тухнă-им? Е сирĕн патăра кăна
çитнĕ-им? 37 Хăйне пророк вырăнне е Турă
Сывлăшĕллĕ çын вырăнне хуракан эпĕ сирĕн
патăра çырни Хуçамăрăн пил-хушăвĕ пулнине
ăнлантăр. 38 Ăнланайманни вара ăнланманнипех
юлтăр. 39 Çапла вара, тăвансемĕр, пророкла
калаçасчĕ тесе тăрăшăр, тĕрлĕрен пĕлмен
чĕлхесемпе калаçма та ан чарăр. 40 Анчах мĕн туни
йăлтах килĕшӳллĕ те йĕркеллĕ пултăр.

### Христос чĕрĕлни

15 Эй, тăвансем! Эпĕ сире хам пĕлтернĕ Ырă
Хыпара татах аса илтеретĕп. Эсир ăна
йышăнтăр, унпа тĕреклентĕр. 2 Эпĕ вĕрентнине
çирĕп тытса пырсан, çиелтен кăна ĕненмен пулсан,
эсир Ырă Хыпарпа çăлăнăр. 3 Мĕншĕн тесен эпĕ
сире чăн малтанах хам мĕн йышăннине патăм:
Çырнинче каланă пекех, Христос пирĕн
çылăхсемшĕн вилнĕ. 4 Çырнинче каланă пекех, Ăна
пытарнă, виççĕмĕш кунне Вăл чĕрĕлсе тăнă.
5 Малтан Вăл Кифăна курăннă, кайран – Вун
иккĕшне, 6 тепринче тата пĕр вăхăтрах пилĕк çĕр
ытла тăванăмăра курăннă. Вĕсенчен хăшĕ-хăшĕ
вилнĕ ĕнтĕ, анчах ытларахăшĕ халĕ те пурăнаççĕ-
ха. 7 Унтан Вăл Иакова курăннă, каярахпа – ытти
мĕн пур апостолсене. 8 Юлашкинчен вара Вăл
мана, юрăхсăра, курăнчĕ. 9 Туррăн чиркĕвне
хĕсĕрленĕрен эпĕ хама апостолсенчен чи
хисепсĕрри, апостол ятне те тивĕçсĕрри тесе
шутлатăп. 10 Анчах та Турă ырăлăхне пула эпĕ
хальхи пек пулса тăтăм. Ăшăмри Унăн ырăлăхĕ
усăсăр пулмарĕ, эпĕ апостолсенчен пуринчен те
ытларах вăй хурса ĕçлерĕм. Тепĕр тесен, вăй
хураканĕ эпĕ мар, ăшăмри Турă ырăлăхĕ. 11 Эпир
пурте Ырă Хыпара пĕрешкел вĕрентетпĕр, эсир
пурте çавна ĕнентĕр.

### Вилнисем чĕрĕлесси

12 Эпир сире Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă тесе
вĕрентетпĕр пулсан, епле-ха сирĕнтен хăшĕ-пĕри
вилнисем чĕрĕлмеççĕ теме хăять? 13 Вилнисем
чĕрĕлмеççĕ пулсан Христос та чĕрĕлмен пулать.
14 Христос чĕрĕлсе тăман пулсан вара эпир
вĕрентни те, эсир ĕненни те кăлăхах. 15 Вилнисем
чăнласах чĕрĕлмеççĕ пулсан эпир сире Турă çинчен
суйса пĕлтернĕ пек пулать. Мĕншĕн тесен эпир
чĕрĕлсе тăман Христоса Турă чĕртнĕ тесе
çирĕплететпĕр. 16 Вилнисем чĕрĕлмеççĕ пулсан
Христос та чĕрĕлмен пулать. 17 Христос чĕрĕлмен
пулсан эсир ĕненни кăлăхах: эсир çылăхăрсенчен
тасалман пулать. 18 Эппин Христоса ĕненсе
вилнисем те яланлăхах пĕтнĕ пулать. 19 Христос
пире хальхи пурăнăçра кăна шанчăк парать пулсан
эпир этемсенчен чи телейсĕррисем пулăттăмăр.
20 Анчах та Христос вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă, Вăл –
пирвайхи. 21 Тĕнчене вилĕм этем урлă килнĕ пекех,
чĕрĕлсе тăрасси те этем урлах. 22 Адамран
пулнисем пурте вилĕмлĕ пекех, Христоса
ĕненекенсем пурте чĕрĕлĕхлĕ. 23 Анчах та кашнин
хăйĕн черечĕ: Христос вилнисенчен чи малтан

чĕрĕлнĕ; Вăл тепре килсен вара Хăйĕннисене
чĕртĕ. 24 Мĕн пур пуçлăха, влаçа, вăй-хăвата
пăрахăçласа, Христос Хăйĕн Патшалăхне Ашшĕне,
Турра, парсан вара вĕçĕ çитĕ. 25 Мĕншĕн тесен Унăн
Хăйĕн тăшманĕсене ури айне тăвичченех патша
пулмалла. 26 Пуринчен кайран вара Вăл юлашки
тăшманне – вилĕме – пĕтерĕ. 27 Мĕншĕн тесен Турă
пурне те Унăн умне ӳксе пăхăнмалла тунă. Пурне те
Ăна пăхăнтарнă тенĕ пулин те, паллă ĕнтĕ, пурне те
Унăн аллине pană Турă ку шута кĕмест. 28 Пурне те
Христоса пăхăнтарсан вара Ывăлĕ те пурне те Хăй
аллине панă Турра пăхăнĕ, вара Турă пĕтĕмпех
пурин ăшĕнче те пулĕ.
29 Апла мар пулсан, вилнисемшĕн тĕне
кĕрекенсем мĕншĕн çапла тăваççĕ-ха? Вилнисем
чĕрĕлмеççĕ пулсан, вĕсемшĕн мĕн тĕне кĕмелли
пур? 30 Мĕншĕн эппин эпир те пĕрмаях хĕн-хур
куратпăр? 31 Эпĕ Иисус Христос Хуçамăр умĕнче
сирĕнпе мăнаçланатăп. Çав мăнаçлăхпа тупа туса
калатăп: эпĕ кашни кунах вилĕмпе куçа-куçăн.
32 Этемле шухăшласа каласан, эпĕ Ефесра тискер
кайăксемпе çапăçнин мĕн усси? Вилнисем
чĕрĕлмеççĕ пулсан, атьăр эппин çиер те ĕçер, ыран
çавах вилмелле! 33 Ан улталанăр: усал юлташсем
ырă кăмăллă çынна та пăсаççĕ. 34 Тăна кĕрĕр,
йĕркеллĕ, çылăхсăр пурăнăр. Сире намăс пултăр та,
анчах çакна калатăп: сирĕнтен хăшĕ-пĕри Турра
пĕлмест.

### Чĕрĕлнĕ ӳт-кӳлепе

35 Хăшĕ-пĕри çапла ыйтĕ: «Вилнисем епле чĕрĕлсе
тăрĕç? Вĕсем мĕнле ӳт-кӳлепеллĕ пулĕç?» 36 Эй,
ăссăрскер! Эсĕ мĕн акни хăй пĕтмесĕр чĕрĕлĕх
памасть. 37 Тулă е урăх тырă-пулă акнă чухне эсĕ
ӳсен-тăран кӳлепине мар, çара пĕрчĕ акатăн.
38 Кайран вара Турă ăна Хăй парас тенĕ пек кӳлепе
парать, кашни вăрлăхăн – хăйĕн кӳлепи.
39 Кӳлеписем вара тĕрлĕрен: этемĕн хăйне май,
выльăх-чĕрлĕхĕн хăйне май, пуллăн хăйне май,
кайăк-кĕшĕкĕн хăйне май. 40 Тӳпере те, çĕр çинче те
кӳлепесем пур. Тӳперисен хăйсен чапĕ, çĕр
çинчисен – хăйсен. 41 Хĕвел хăйне май чаплă, уйăх
хăйне май чаплă, çăлтăрсем хăйне май чаплă.
Çăлтăрпала çăлтăр чапĕ те пĕр мар.
42 Вилнисем чĕрĕлсе тăрасси те çавнашкалах.
Çĕрекен ӳт çĕре кĕрет, çĕрми пулса чĕрĕлсе тăрать.
43 Çĕр айне пытарни чапсăр, чĕрĕлсе тăраканни
чаплă. Çĕр айне пытарни халсăр, чĕрĕлсе
тăраканни хăватлă. 44 Чунлă пулни çĕре кĕрет, чун-
чĕмлĕ пуласси чĕрĕлсе тăрать. Чунлă ӳт-кӳлепе пур
пулсассăн, эппин чун-чĕмли те пур. 45 Çырнинче
çапла каланă та: «Малтанхи этем, Адам, чĕрĕ чунлă
пулса тăнă». Кайранхи Адам вара чĕрĕ тăвакан чун-
чĕмлĕ. 46 Анчах та малтан чун-чĕмли мар, чунли
пулать. Кайран тин чун-чĕмли пулать. 47 Малтанхи
этем – çĕртен, тусантан пулнă, кайранхи вара –
тӳперен аннă Хуçамăр. 48 Тусантан пулнă малтанхи
этем мĕнле, ыттисем те çавнашкал. Тӳперен анни
мĕнле, ыттисем те çавнашкал. 49 Эпир тусантан
пулнин сăнарĕпе епле çӳренĕ, çавнашкалах
тӳперен аннин сăнарĕпе çӳрĕпĕр.
50 Анчах та, тăванăмсем, сире акă мĕн калам: ӳтпе
юн Турă Патшалăхне кĕреймеççĕ, çĕрекенни
çĕрмен çĕре кĕреймест. 51 Тата сире çак
вăрттăнлăха пĕлтерем: эпир пуртех те вилместпĕр,
анчах пурте улшăнатпăр. Улшăнасса вара пурте
пĕр самантрах, юлашки труба сасси илтĕнсенех
улшăнатпăр. Труба кăшкăртсан вара вилнисем
çĕрми чĕрĕлсе тăрĕç, эпир улшăнăпăр. 53 Мĕншĕн
тесен çĕрекен ӳт-пĕвĕн çĕрми пулса тăмалла,
вилĕмлĕ ӳт-пĕвĕн вилĕмсĕр пулса тăмалла.
54 Çĕрекен ӳт-пӳ çĕрми пулсан, вилĕмлĕ ӳт-пӳ
вилĕмсĕр пулсан вара Çырнинче: «Вилĕме
тĕппипех çĕнтернĕ», – тени пурнăçланĕ. 55 «Эй,
вилĕм! Ăçта санăн сăнну? Эй, тамăк! Ăçта санăн
çĕнтерĕвӳ?» 56 Вилĕм сăнни – çылăх, çылăх вăйĕ
вара саккунранах килет. 57 Иисус Христос Хуçамăр
урлă пире çĕнтерӳ панăшăн тавах Турра! 58 Эй,
савнă тăванăмсем! Ĕнтĕ çирĕп те иккĕленӳсĕр
пулăр. Хуçамăр ĕçĕшĕн яланах пĕтĕм чуна парса
тăрăшăр, эсир тăрăшни Хуçа Турă умĕнче усăсăр
пулманнине пĕлсе тăрăр.

### Чухăн ĕненекенсене пулăшасси

16 Чухăн ĕненекенсем валли пулăшу пуçтарнă
чухне эпĕ Галатири ĕненекен ушкăнсене
хушнă пек тăвăр. 2 Эпĕ сирĕн патăра пырсан тин
пуçтармалла ан пултăр тесен, сирĕнтен кашниех
эрнен малтанхи кунĕнче хăй пултарнă таран
уйăрса хурса упратăр. 3 Эпĕ вара, пырсассăн, пухнă
пулăшăва Иерусалима леçме хăвăр суйласа илнĕ
çынсене хут çырса парса ярăп. 4 Хамăн та каймалла
пулсассăн вĕсем манпа пырĕç.

### Çул çӳреме палăртса хуни

5 Македони тăрăхĕсенче çӳресе çавăрăнсассăн
вара сирĕн патăра çитĕп, мĕншĕн тесен эпĕ
Македони урлă пыма шухăшлатăп. 6 Пĕр вăхăт эпĕ
сирĕн патăрта пурăнасшăн, тен, хĕл каçăп та,
кайран вара эсир мана каяс çĕре ăсатса ярăр.
7 Хальхинче эпĕ сирĕнпе çула май кăна
курнăçасшăн мар, Хуçа Турă пулăшсан, сирĕн
патăрта пĕр вăхăт пурăнасса шанатăп. 8 Ефесра
вара эпĕ Аллăмĕш кун уявĕччен пулăп. 9 Турăшăн
тăрăшса ĕçлемешкĕн кунта лайăх майсем уçăлчĕç,
тăшмансем те нумай. 10 Тимофей сирĕн патăра
çитсессĕн унăн нимрен те хăраса пурăнмалла ан
пултăрччĕ тесе тăрăшăр. Хуçамăр ĕçĕшĕн вăл
манашкалах çунать. 11 Çавăнпа та сирĕн хушшăрта
ун çине çӳлтен пăхакан ан пултăр. Ман патăма
тавăрăнмашкăн ăна эсир кăмăллăн çула пуçтарăр.
Эпĕ ăна кунта ĕненекен тăванăмсемпе пĕрле
кĕтетĕп. 12 Аполлос тăванăмăр пирки вара çакна
каламалла: сирĕн патăра ытти тăвансемпе пĕрле
пыма эпĕ ăна питĕ тархасларăм, анчах та вăл халь

пыма кăмăл тумарӗ. Майлăрах вăхăт тупăнсассăн пырӗ.

### Ҫыру вӗҫӗнче ыйтни. Саламсем

13 Сыхă тăрăр, ӗненӳре ҫирӗп пулăр, паттăр та
вăйлă пулăр. 14 Мӗн тунине йăлтах юратса тăвăр.
15 Эй, тăвансем! Манăн сирӗнтен акă мӗн пирки
ыйтмалли пур. Эсир Стефан кил-йышне, вӗсем
Ахаияри малтанхи ӗненекенсем пулнине пӗлетӗр.
Вӗсем ӗненекенсемшӗн ырми-канми тăрăшаҫҫӗ.
16 Эсир ҫав малтанхи ӗненекенсемпе сăпайлă
пулăр, Турăшăн тăрăшса ӗҫлекенсене тата
пулăшакансене пурне те хисеплӗр. 17 Стефан,
Фортунат тата Ахаик кунта килсе ҫитни мана
савăнтарчӗ, хам сирӗнпе пулманни те ытлах
сисӗнмест. 18 Вӗсем ман чунăма та, сирӗн чунăра та
лăплантарчӗҫ. Ун пек ҫынсене хисеплӗр.
19 Аси тăрăхӗнчи ӗненекен ушкăнсем сире салам
яраҫҫӗ. Уйрăммăнах сире Акилăпа Прискилла тата
вӗсем патӗнче пухăнакан ӗненекен ушкăнрисем
Хуҫа Турă ячӗпе салам калаҫҫӗ. 20 Мӗн пур ӗненекен
тăвансенчен сире салам. Эсир те пӗр-пӗрне
сăваплăн, тăванла чуптуса саламлăр. 21 Куна хамăн
аллăмпах ҫыратăп: эпӗ, Павел, сире салам яратăп.
22 Иисус Христос Хуҫамăра юратман ҫынсене вара
ылхан пултăр. Килсемччӗ, Хуҫамăр! 23 Сире Иисус
Христос Хуҫамăрăн ырăлăхӗ пултăр. 24 Эпӗ сире,
Христос Иисуса ӗненекенсене, пурне те юрататăп.
Аминь.

# Коринфсем патне 2-мĕш

### Саламлани

1 Турă ирĕкĕпе Иисус Христосăн апостолĕ пулма
тивĕçнĕ Павелран тата Тимофей тăванăмран –
Коринфри Турă чиркĕвне тата пĕтĕм Ахаияри мĕн
пур ĕненекенсене. 2 Сире Атте Туррăмăртан тата
Иисус Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăçлăх
пултăр.

### Павел Турра тав туни

3 Иисус Христос Хуçамăрăн Турри тата Ашшĕ
мухтавлă пултăр! Вăл – хĕрхенӳлĕхĕн Ашшĕ, тем
тĕрлĕ лăплантару Турри. 4 Вăл пире тĕрлĕ хĕн-хурта
лăплантарать. Турă панă çав лăплантарупа эпир те
хĕн-хур куракансене лăплантарма пултаратпăр.
5 Пурăнăçăмăрта Христос тӳснĕ пек асапсем
нумайланса пынăçемĕн эпир Христос урлă
нумайрах та нумайрах лăплантару илетпĕр.
6 Хурлăх курасса та эпир сире лăплантарма, çăлăнăç
пама куратпăр. Лăплану илнĕрен вара эпир
чăтнине эсир те тӳсĕмлĕн чăтаятăр. 7 Эпир сире
çирĕп шанатпăр. Лăплану илессе те эпир сире
лăплантарма, çăлăнăç пама илетпĕр. Эпир çакна
пĕлсе тăратпăр: хурлăхра та, лăпланура та эсир
яланах пирĕнпе пĕрле.
8 Эй, тăвансем! Эпир Асире мĕнле хĕн-хур тӳснине
сире пĕлтермесĕр хăварас килмест. Çав чăтма çук
йывăр асапа пула эпир хамăр чĕрĕ юласса та
шанма пăрахнăччĕ, 9 пире вилмех пӳрнĕ пулĕ
тенĕччĕ. Анчах та мĕн пулни йăлтах хамăра мар,
вилнисене чĕртекен Турра шанмашкăн пулса иртнĕ
иккен. 10 Турă ун чухне пире, вилес патнех
çитнĕскерсене, хăтарчĕ; халĕ те хăтарать. Эсир
пирĕншĕн кĕлтусах тăрсан, Турă пире малашне те
хăтарасса шанатпăр. Вара, нумайăшĕн кĕллине
илтсе, пире хĕрхеннĕшĕн нумай-нумай çын Турра
тав тăвĕ.

### Павел Коринфа вăхăтра пырайманни

12 Эпир вара таса чунпа çакна калатпăр:
çынсемпе, уйрăммăнах сирĕнпе, эпир пĕр
чеелĕхсĕр, Турра юрăхлă пек уçă кăмăллă пултăмăр;
этем ăслăлăхĕпе мар, Турă ырăлăхĕпе пурăнтăмăр.
Çавăншăн эпир мухтанатпăр. 13 Çырасса та эпир
сирĕн пата вуласа ăнланма çук япаласем çинчен
çырмастпăр. Иисус Христос Хуçамăрăн кунĕнче
эпир сирĕн урлă, эсир пирĕн урлă мухтава тухасса
ăнлана пуçларăр, ĕнтĕ тĕппипех ăнланса илессе
шанатăп.
15 Çакна çирĕп шанса, сире тепĕр хут чун-чĕм
пархатарĕ парас тесе эпĕ сирĕн патăра маларах
пырасшăнччĕ. 16 Пĕрре эпĕ сирĕн патăра
Македоние кайнă чухне çула май кĕресшĕнччĕ,
тепре – унтан тавăрăннă чухне. Эсир вара мана
Иудейăна ăсатса ярăттăр. 17 Çапла шухăшласа эпĕ
çăмăлттайла хăтлантăм-ши? Е мĕн те пулин тума
шухăшласан çак тĕнче çыннисем пек пĕрре апла,
тепре капла калаçатăп-и? 18 Эпир сире пĕрре апла,
тепре капла темен. Турă епле шанчăклă, пирĕн
сăмахăмăр та çапла шанчăклă. 19 Эпĕ те, Силуан та,
Тимофей та – виççĕмĕр те – сирĕн патăрта Турă
Ывăлĕ Иисус Христос çинчен ӳкĕтлесе
вĕрентрĕмĕр. Турă Хăйĕн Ывăлне çĕр çине
килтерни «çапла» е «çук» тени мар, татăклăн
«çапла» тени пулать. 20 Турă шантарнисем
Христосра пурте «çапла». Çавăнпа та эпир Христос
урлă Турра «аминь» тесе мухтатпăр. 21 Пире те, сире
те Христоспа пĕрлĕхлĕ туса çирĕплетекенĕ, суйласа
илекенĕ вара – Турă. 22 Вăл пире Хăйĕн пичечĕпе
палăртнă, пуласси шантарса чĕремĕрсене Хăйĕн
Сывлăшне хывнă.
23 Турă умĕнче калатăп: сире хĕрхеннĕрен эпĕ
Коринфа халĕ те пырса çитейместĕп-ха. 24 Эпир
сирĕн ĕненĕвĕрпе пуç пуласшăн мар – сире
савăнтармалăх сирĕнпе пĕрле тăрăшасшăн.
Ĕненӳре вара эсир хăвăрах çирĕп.
2 Çапла вара, эпĕ сирĕн патăра пырса татах
кулянтарса çӳрес темерĕм. 2 Сире кулянтарсан
мана савăнтараканĕ кам пулĕ? Эсирех, хам
кулянтарнисемех, мар-и вара? 3 Сирĕн патăра
пырсассăн эсир мана савăнтарасса кĕтетĕп.
Çавăнпа та, кулянмалла пулса ан тухтăрччĕ тесе,
çакна пыричченех çыртăм та ĕнтĕ, мĕншĕн тесен
манăн савăнăçăм сирĕншĕн пуриншĕн те савăнăç.
Эпĕ сирĕн пирки иккĕленместĕп. 4 Çырасса та эпĕ
сирĕн патăра питĕ хуйхăллă, суранлă чĕрепе, вĕри
куççуль юхтарса çыртăм. Сире кулянтарас тесе мар,
хам сире мĕн тери юратнине пĕлччĕр терĕм.

### Кӳрентерекенсене каçарасси

5 Мана кӳрентерекен те пулчĕ-ха, анчах вăл мана
кăна мар, сире пурсăра та пăртак кӳрентерчĕ.
Ӳстерсе калас мар тенĕрен пăртак тетĕп-ха.
6 Çавнашкал çыншăн нумайăшĕ питлени хăех
айăплани пулĕ. 7 Ĕнтĕ вăл ытлашши хуйха ан ӳктĕр

тесен, эсир ăна каçарни, лăплантарни вырăнлăрах.
8 Çавăнпа та тархасласах ыйтатăп: хăвăр ăна
малтанхиллех юратнине кăтартса парăр.
9 Малтанхи çырăвне те эпĕ сире тĕрĕслесе пăхас
тесе, сăмахăмран иртместĕр-ши тесе çырнăччĕ.
10 Эсир кама каçаратăр, эпĕ те ăна каçарăп. Эпĕ те,
кама та пулин каçарсан, ăна Христос умĕнче
сирĕншĕн каçаратăп. 11 Çапла туни пире шуйттан
çиеле тухасран хăтарать; унăн киревсĕр
шухăшĕсем пирĕншĕн паллă.

### Павел канăçсăрлăхĕ тата лăпланăвĕ

12 Эпĕ Троадăна Христос çинчен Ырă Хыпар
пĕлтерме пырсассăн, Хуçамăр мана лайăх майсем
уçса пачĕ. 13 Çапах та манăн ăшăм вăркарĕ, мĕншĕн
тесен эпĕ унта Тит тăванăмăра тупаймарăм. Вара
унтисемпе сывпуллашрăм та Македоние тухса
кайрăм.
14 Тавах Турра! Турă пире Христос урлă яланах
çĕнтерӳллĕ тăвать. Пирĕн урлă вара Хăй çинчен
пур çĕрте те техĕмлĕ те чаплă пĕлӳ сарать. 15 Эпир
Турăшăн – Христосăн техĕмлĕхĕ. Çав ырă шăршă
çăлăнакансем хушшинче те, пĕтекенсем хушшинче
те сарăлать. 16 Пĕрисемшĕн эпир вилĕм кӳрекен
пĕтмелли шăршă, теприсемшĕн – чĕрĕлĕх паракан
пурăнăç шăрши. Çак тивĕçе кам хăй çине илме
пултарĕ? 17 Нумайăшĕ Турă сăмахне пăсса
вĕрентеççĕ, эпир апла вĕрентместпĕр. Христоспа
пĕрлĕхлĕ пулса, Турă сăмахне Унăн çыннисем пек
таса чунпа пĕлтерсе, Турă умĕнче вĕрентетпĕр.

### Çĕнĕ Халалшăн тăрăшакансем

3 Сире хамăрпа çĕнĕрен паллаштармалла-и?
Хăшĕ-пĕрисем сирĕн патăра пынă чухне е
сирĕн патăртан кайнă чухне ятарласа хăйсене
ырланă çыру çыртараççĕ. Пире вăл кирлĕ-и?
Паллах, кирлĕ мар. 2 Пирĕн çыру – эсир. Ăна
чĕремĕрсенче çырнă, ăна пурте пĕлеççĕ, пурте
вулаççĕ. 3 Эсир Христосăн çырăвĕ иккенне хăвăрах
кăтартса паратăр. Эпир тăрăшнипе ăна чернилпа
мар, чĕрĕ Туррăн Сывлăшĕпе çырнă. Ăна чул хăма
çине мар, этем чĕрисем çине çырнă. 4 Пирĕн çак
çирĕп шанчăк Христос урлă Турăран килет. 5 Мĕн те
пулин хамăртан килет текен шухăш пирĕн пуçа та
пырса кĕмест, мĕншĕн тесен пирĕн пултарулăх –
Турăран. 6 Турă пире Çĕнĕ Халалшăн тăрăшма
пултарулăх панă. Çав Халалра вара чи кирли –
çырнă сас палли мар, Сывлăш. Мĕншĕн тесен
саккунри чĕрĕ мар сас палли вилĕм кӳрет, Сывлăш
вара чĕрĕлĕхлĕ тăвать.
7 Чул хăмасем çине çырнă чĕрĕлĕх парайман сас
паллишĕн ĕçлесе тăни те мухтавлă пулнă. Çав сӳнес
мухтав çути çиçсе тăнăран Израиль çыннисем
Моисей сăн-пичĕ çине те пăхма пултарайман.
8 Саккуншăн ĕçлесе тăни те çав тери мухтавлă
пулсассăн, Сывлăш хавхалантарнипе тăрăшасси
татах та мухтавлăрах мар-и? 9 Айăплакан
саккуншăн ĕçлесе тăни чаплă пулсассăн, тӳрре
кăларакан халашăн тăрăшасси мĕн тери чаплăрах!
10 Ку тĕлĕшĕнчен вара кайранхи мухтав çути
хупласа хунăран малтанхи халĕ мухтав пек те
туйăнмасть. 11 Мĕншĕн тесен сӳнес çутă мухтавлă
пулсан, сӳнмен çутă мĕн тери мухтавлăрах.
12 Çавнашкал шанчăк пуртан эпир уççăн та
хăюллăн калаçатпăр. 13 Эпир Моисей пек мар.
Израиль çыннисем мухтав çути сӳннине ан
асăрхаччăр тесе, вăл сăн-питне пĕркенчĕкпе
хупласа çӳренĕ. 14 Анчах та Израиль çыннисен ăсĕ
хытса ларнă. Авалхи Халала вуланă чухне вĕсем çав
пĕркенчĕке уçаймаççĕ, мĕншĕн тесен вăл Христос
урлă кăна уçăлать. 15 Моисей саккунне вуланă чухне
паян кунччене вĕсен чун-чĕрине пĕркенчĕк витсе
тăрать; 16 анчах та Хуçамăр енне çавăрăнсан çав
пĕркенчĕк илĕнет. 17 Хуçамăр вăл – Сывлăш;
Хуçамăрăн Сывлăшĕ ăçта, ирĕклĕх те çавăнта.
18 Пирĕн çине, уçă сăн-питлĕскерсем çине, Хуçа Турă
мухтавĕн çути тĕкĕр çине ӳкнĕ пек ӳкет. Хуçа
Туррăмăрăн Сывлăшĕ пулăшнипе эпир Ун евĕрлĕ
пулса, чаплăланса пыратпăр.

### Тăм савăтри мул

4 Турă пире Хăйĕн ырăлăхĕпе çакнашкал ĕç
шанса панă, çавăнпа эпир хуйха ӳкместпĕр.
2 Унтан та ытларах, вăрттăн та намăс ĕççенчен
пăрăнса, эпир чееленместпĕр, Турă сăмахне
пăсмастпăр. Чăнлăха уççăн пĕлтерсе Турă умĕнче
эпир çынсене хамăрпа хамăрах паллаштаратпăр.
3 Эпир пĕлтерекен Ырă Хыпар хупланчăк пулсассăн,
вăл пĕтмелли çул çинче тăракансемшĕн кăна
çапла. 4 Вĕсен, ĕненменнисен, ăсне çак тĕнче турри
суккăрлатнă. Вĕсем Христос мухтавĕ çинчен
калакан Ырă Хыпар çутине курмаççĕ. Христос вара
– курăнман Туррăн курăннă сăнарĕ. 5 Эпир хамăр
çинчен вĕрентместпĕр, Иисус Христос вăл пирĕн
Хуçамăр пулни çинчен вĕрентетпĕр. Эпир Иисус
ячĕшĕн сирĕн чура пултăмăр. 6 Çутта тĕттĕмлĕхрен
пулма хушнă Турă пире Хăйĕн мухтавне пĕлтерсе
çутта кăлармашкăн чĕремĕрсене çутатрĕ. Мухтав
çути вара Иисус Христос сăн-питĕнчен килет.
7 Эпир çав мул упранакан тăм савăтсем çеç. Çапла
ĕнтĕ, виçесĕр вăй-хăват пирĕнтен мар, Турăран
килни уççăнах палăрать. 8 Çавăнпа та пире темĕн
чухлĕ таптасан та аркатаймаççĕ. Тӳсме çук
йывăрлăхра та эпир шанчăка çухатмастпăр. 9 Пире
хĕсĕрлеççĕ, анчах Турă пăрахмасть. Пире ураран
ӳкереççĕ, анчах пĕтерейместпĕр. 10 Хамăр ӳт-пӳре
Иисусăн чĕрĕлĕхĕ палăртăр тесе, эпир яланах
Иисус Хуçамăрăн вилĕмлĕхĕпе çӳретпĕр. 11 Эпир,
вилĕмлĕ ӳт-пӳре Иисусăн чĕрĕлĕхĕ палăртăр тесе,
пурăннă чухне Иисус ячĕшĕн тăтăшах вилĕмпе
куçа-куçăн тăратпăр. 12 Çапла вара, пирĕн валли –
вилесле асапсем, сирĕн валли – чĕрĕ пурăнăç.
13 «Эпĕ ĕненетĕп, çавăнпа калатăп», – тенĕ
Çырнинче. Эпир те çавнашкалах çирĕп ĕненетпĕр,
ĕненнĕрен калатпăр та. 14 Мĕншĕн тесен çакна

пĕлетпĕр: Иисус Хуçамăра чĕртсе тăратнă Турă пире те, Иисуса чĕртнĕ пекех чĕртсе, сирĕнпе пĕрле Хăй умне тăратĕ. 15 Ĕнтĕ нумайăшĕ Туррăн тулли ырăлăхне илсе Турра ытларах та ытларах тав туса мухтаччăр тесе, эпир пурне те сирĕншĕн тӳсетпĕр.

### Ĕненӳпе пурăнасси

16 Çавăнпа та эпир хуйха ӳкместпĕр. Ӳт-пӳ ватăлать пулин те, чун-чĕм кунран-кун çĕнелсех пырать. 17 Вăхăтлăх кăшт асапланнăшăн эпир виçесĕр пысăк, ĕмĕрлĕх мухтав илетпĕр. 18 Эпир курăнаканни патне мар, курăнманни патне ăнтăлатпăр; мĕншĕн тесен курăнаканни вăхăтлăха, курăнманни ĕмĕрлĕхе.

5 Эпир пĕлетпĕр: çĕр çинчи пирĕн пӳрт, çак хӳшĕ, аркансассăн, тӳпере пирĕн алăпа туман, Турă хатĕрленĕ ĕмĕрлĕх кил-çурт пур. 2 Çавăнпа та çĕр çинчи хӳшĕре пурăннă чухне эпир тӳпери кил-çуртăмăра кĕресшĕн, тӳпе тумтирне тăхăнасшăн тертленсе ахлататпăр. 3 Анчах та тумланнă çинчех пирĕн çарамас юлас марччĕ. 4 Эпир çав ӳт-пӳлĕх хӳшши пусса тăнипе тертленсе ахлататпăр. Эпир ӳт-пӳлĕхе хывса пăрахасчĕ теместпĕр, ун çийĕнчен тӳпе тумтирне тăхăнасчĕ, ĕмĕрлĕх пурăнăç вилĕмлине хуплатăрччĕ тетпĕр. 5 Турă пире шăпах та çавăншăн хатĕрленĕ, сăмахне тытма шантарса Хăйĕн Сывлăшне панă.

6 Ĕнтĕ эпир яланах хастар кăмăллă. Ӳт-пӳлĕх хӳшшинче пурăннă чухне Хуçамăртан аякра пулнине пĕлетпĕр – 7 эпир хамăр куç мĕне курнипе мар, чунăмăр мĕне ĕненнипе пурăнатпăр – 8 çавăнпа та эпир, хастар кăмăллă пулса, ӳт-пӳрен тухса Хуçамăр патне куçни аванрахчĕ тесе ĕмĕтленсе пурăнатпăр. 9 Çавăнпа эпир ӳт-пӳлĕх хӳшшинче пурăннă чухне те, унтан тухсан та Ăна юрăхлă пулаясчĕ тесе тимлĕн тăрăшатпăр. 10 Мĕншĕн тесен пирĕн пурин те Христос сучĕ умне тăмалла, ӳт-пӳлĕх хӳшшинче пурăннă чухне мĕн тунине курă – ырă е усал тунине курă – тивĕçлине илмелле.

### Çынсене Турăпа çураçтарас ĕç

11 Çапла вара, Хуçа Турă сумлăхĕнчен хăрамаллине пĕлсе, эпир çынсене ӳкĕтлетпĕр. Турă пире пĕлсе тăрать, эсир те пире пĕлетĕр пуль тесе шанатăп. 12 Çакна эпир хамăра каллех ырлаттарасшăн каламастпăр. Хăшĕ-пĕрисем чунрипе мухтанас вырăнне тулашĕнчипе мухтанаççĕ. Ун пеккисене тавăрса каламашкăн эпир сире хамăрпа мухтанма сăлтав паратпăр. 13 Эпир ăсран тухнă пек тăрăшни – Турăшăн, ăслă-тăнлă тăрăшни – сирĕншĕн. 14 Мĕншĕн тесен пире Христос юратулăхĕ ертсе пырать. Эпир çапла шухăшлатпăр: пĕри пуриншĕн те вилнĕ пулсассăн, эппин пурте вилнĕ. 15 Чĕррисем хăйсемшĕн мар, хăйсемшĕн вилсе чĕрĕлнишĕн пурăнччăр тесе, Христос пуриншĕн те вилнĕ.

16 Çавăнпа эпир текех никама та этемле шухăшласа хакламастпăр. Маларах эпир Христос пирки çавнашкал этемле шухăшланă пулсан, халĕ ĕнтĕ ун пек шухăшламастпăр. 17 Çапла вара, кам Христоспа пĕрлĕхлĕ, Турă çавна çĕнĕрен пултарнă. Авалхи иртсе кайнă, халĕ йăлтах çĕнни. 18 Çакă пĕтĕмпех Турăран, Вăл пире Христос урлă Хăйĕнпе çураçтарнă, çынсене Хăйĕнпе çураçтарас ĕçе пире шанса панă. 19 Мĕншĕн тесен Турă, çынсен çылăхĕсене шута хумасăрах, Христос урлă Хăйпе тĕнчене çураçтарнă, çураçтару сăмахне вĕрентме пире шанса панă. 20 Çапла ĕнтĕ эпир Христос ячĕпе вĕрентме янăскерсем пулатпăр. Эпир ӳкĕтлеместпĕр, пирĕн урлă Турă Хăй ӳкĕтлет, ĕнтĕ Христос ячĕпе тархаслатпăр: Турăпа çураçăр. 21 Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса Турă умĕнче тӳрре тухчăр тесе, пирĕн çылăхсемшĕн Вăл çылăха кĕрсе курманскере парнелĕхе кӳнĕ.

6 Эпир вара, Турă ĕçне тăвакансем пулса, сире çапла йăлăнатпăр: Турă ырăлăхне илни сирĕншĕн усăсăр ан пултăр. 2 «Майлă вăхăтра Эпĕ сана илтрĕм, çăлăнăç кунĕнче сана пулăшрăм», – тесе каланă-çке Турă. Акă ĕнтĕ çав майлă вăхăт çитрĕ, акă ĕнтĕ çав çăлăнăç кунĕ килчĕ. 3 Хамăр ĕçе ан хурлаччăр тесе эпир никама та, нимĕнле те такăнтармастпăр. 4 Пур тĕлĕшĕнчен те хамăра Турă ĕçне тăвакансем пек тыткалатпăр, пурне те пысăк чăтăмлăхпа тӳсетпĕр: хура-шурне те, хĕсĕрленине те, 5 хĕненине те, тĕрмене хупнине те, хӳтернине те, йывăр ĕçе те, çĕр çывăрманнине те, хырăм выççине те. 6 Хамăр ĕçе эпир таса, ăслă-тăнлă, пысăк чунлă, ырă, Святой Сывлăш тивлечĕллĕ, чăн-чăн юратуллă, 7 чăнлăх сăмахĕллĕ, Турă вăй-хăвачĕллĕ пулнипе çирĕплететпĕр. Икĕ аллăмăрта та – тӳрĕлĕх хĕçĕ. 8 Чыслăхпала чыссăрлăх, ырă ятпа усал ят пирĕн хыççăнах çӳреççĕ. Пирĕнте суялăх çук пулин те, пире суеçĕ теççĕ. 9 Эпир паллă çынсем мар, анчах пире пурте пĕлеççĕ. Пирĕн çинчен вилнĕ сăмах та кăлараççĕ, акă, хăвăрах куратăр, эпир чĕрĕ. Пире вĕлермеллех айăплаççĕ, анчах та эпир вилместпĕр. 10 Пире кӳрентереççĕ, анчах та эпир яланах савăнăçлă. Пире чухăн теççĕ, анчах та эпир нумайăшне пĕтми мул паратпăр. Пирĕн, çук çынсен, пурте пур.

11 Эй, Коринф çыннисем! Сирĕншĕн пирĕн чĕлхе-çăвар уçă, чун-чĕремĕр аслă. 12 Эсир пирĕн чун-чĕремĕрте, анчах сирĕн чун-чĕрĕрте пирĕншĕн вырăн сахал. 13 Ачамсене каланă пек калатăп: хире-хирĕçле пултăр тесен эсир те чун-чĕрĕре уçăр.

### Чĕрĕ Туррăн çурчĕ

14 Ĕненменнисемпе пĕрле пĕр лава ан кӳлĕнĕр, вĕсем сире юлташ мар. Тӳрĕлĕхĕн йĕркесĕрлĕхпе мĕн хутшăнмалли пур? Çутăпала тĕттĕмĕн мĕн пĕрлĕхĕ пур? 15 Христоспала Велиар епле килĕштерччĕр? Е ĕненекенпе ĕненмен çын

хушшинче мӗн пӗрлӗхӗ пур? 16 Туррӑн ҫурчӗпеле
пуҫҫапмалли кӗлеткесем епле пӗрле пулччӑр? Эсир
вара – чӗрӗ Туррӑн ҫурчӗ. Турӑ ҫапла каланӑ: «Эпӗ
вӗсен ӑшӗнче, вӗсен хушшинче пурӑнӑп; вара
вӗсен Турри пулӑп, вӗсем Манӑн халӑхӑм пулӗҫ».
17 «Ҫавӑнпа та вӗсем хушшинчен тухса кайӑр,
уйӑрӑлӑр, – тет Хуҫа Турӑ. – Таса маррине ан
сӗртӗнӗр, вара Эпӗ сире хапӑл туса йышӑнӑп».
18 «Эпӗ вара сирӗн Аҫӑр пулӑп, эсир Манӑн
ывӑлӑмсем, хӗрӗмсем пулӑр, тет Пурне те тытса
тӑракан Хуҫамӑр».
7 Эй, савнӑ тӑванӑмсем! Акӑ мӗнле сӑмах парса
шантарнӑ пире. Эппин хамӑра хамӑр ӳт-пӳпе
чунӑн тӗрлӗ ирсӗрлӗхӗнчен тасатар, Турӑран
хӑраса сӑваплӑх патне ӑнтӑлар.

### Павел ӗненекен ушкӑн ӳкӗннишӗн савӑнни

2 Чунӑрсене уҫса пире йышӑнсамӑрччӗ! Эпир
никама та кӳрентермен, сиен туман, никам шучӗпе
те пуйман. 3 Эпӗ сире ӳпкелеместӗп. Маларах ҫапла
каланӑччӗ ӗнтӗ: эсир пирӗн чун-чӗремӗрте, вилсен
те, пурӑнсан та пӗрлех пуласчӗ. 4 Эпӗ сире хытӑ
шанатӑп, сирӗнпе нумай мухтанатӑп. Инкек-
синкекре сире аса илетӗп те чунӑм хастарлӑхпа,
виҫесӗр савӑкпа тулать.
5 Македоние ҫитсессӗн эпир нимле канлӗх те
тупаймарӑмӑр. Пире пур енчен те инкек-синкек
кӗтсех тӑчӗ: йӗри-тавра – хирӗҫӳлӗх, ӑшра –
шиклӗх. 6 Анчах та йӑвашшисене хастарлӑх
паракан Турӑ пирӗн патӑмӑра Тита ярса пире те
ҫирӗплӗх пачӗ. 7 Эпир Тит килнишӗн кӑна мар, вӑл
сирӗн патӑртан хавхаланса килнишӗн савӑнтӑмӑр.
Тит пире эсир тӑрӑшни, кулянни, маншӑн тем тума
та хатӗр пулни ҫинчен каласа кӑтартрӗ. Вара эпӗ
тата ытларах савӑнса кайрӑм. 8 Хамӑн ҫырӑвӑмпа
сире кулянтартӑм пулин те, ӳкӗнместӗп – маларах
ӳкӗне те пуҫланӑччӗ, – мӗншӗн тесен ҫав ҫыру,
вӑхӑтлӑха пулин те, сире кулянтарнине пӗлетӗп.
9 Савӑнасса вара халӗ эпӗ сире кулянмалла пулса
тухнишӗн мар, эсир куляннипе ӳкӗннишӗн
савӑнатӑп. Эсир кулянни Турра юрӑхлӑ, эппин
хамӑр ҫырупа эпир сире сиен тумарӑмӑр.
10 Мӗншӗн тесен Турӑшӑн хуйхӑрни каялла
тавӑрӑнми ӳкӗнтерсе ҫӑлӑнӑҫ кӳрет, ку тӗнчеришӗн
хуйхӑрни вара вилӗм кӳрет. 11 Пӑхӑр-ха, Турӑшӑн
хуйхӑрни сире епле тимлекен, каҫару ыйтакан
турӗ. Тата эсир ҫылӑха кӗнӗ ҫынна еплерех
тарӑхатӑр, еплерех хӑраса пӑшӑрханатӑр, пирӗнпе
тӗл пулма ӗмӗтленетӗр. Ҫылӑхлине айӑплас
кӑмӑлӑр тата еплерех пысӑк! Эсир ҫав ӗҫре хӑвӑр
таса пулнине пур тӗлӗшӗнчен те кӑтартса патӑр.
12 Ҫапла вара, эпӗ сирӗн пата янӑ ҫырӑва хур
тӑваканшӑн та, хур кураканшӑн та ҫырман, эпир
Турӑ умӗнче сирӗншӗн мӗнле тӑрӑшни паллӑ
пултӑр тесе ҫырнӑ. 13 Эсир хавхалантарнишӗн эпир
питӗ савӑнтӑмӑр, анчах та сирӗн патӑртан чунне
лӑплантарса тавӑрӑннӑ Тит савӑнӑҫне курсан, эпир
тата ытларах хӗпӗртерӗмӗр.
14 Ҫапла ӗнтӗ сирӗн пирки Тит умӗнче мухта-
мухта калаҫнӑшӑн мана намӑс пулмарӗ. Эпир сире
яланах чӑннине каланӑ пекех, Тит умӗнче сире
мухтани те чӑна тухрӗ. 15 Халӗ вара Тит эсир мӗнле
итленине, мӗнле хисеплесе-хӑраса хапӑл тунине
аса илет те кӑмӑлӗпе тата ытларах сирӗн патӑра
туртӑнать. 16 Ӗнтӗ эсир пур тӗлӗшӗнчен те
шанчӑклӑ пулнишӗн савӑнатӑп.

### Кӑмӑллӑ пулӑшу

8 Эй, тӑвансем! Халӗ эпир сире Македонири
ӗненекен ушкӑнсене Турӑ панӑ ырӑлӑх ҫинчен
пӗлтересшӗн. 2 Нумай инкек-синкек тӳсеҫҫӗ пулин
те, вӗсем савӑнмаллипех савӑнаҫҫӗ. Аран-аран,
ҫити-ҫитми пурӑнаҫҫӗ пулин те, вӗсен тараватлӑхӗ
ытлашшипех. 3 Вӗсем вӑйӗсем ҫитнӗ таран ҫеҫ мар,
пултарнинчен те ытларах пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ.
Ҫакна куҫӑн курнӑран калатӑп. 4 Вӗсем пире
ӗненекенсене пулӑшас чыслӑ ӗҫе хутшӑнмашкӑн
ирӗк пама тархасларӗҫ. 5 Вӗсем эпир шаннӑ чухлӗ
кӑна мар, унтан та ытларах турӗҫ, пӗтӗм чунне чӑн
малтанах Хуҫа Турра, унтан Турӑ ирӗкӗпе пире
пачӗҫ. 6 Ҫавӑнпа та эпир Тита ҫав ырӑ пулӑшу ӗҫне
сирӗн патӑрта епле аван пуҫланӑ, ҫаплах туса
пӗтерме хушрӑмӑр. 7 Ӗненни, ӑста калаҫни, пӗлни,
пур енчен те тӑрӑшуллӑ пулни, пире юратни –
ҫаксем пурте сирӗн туллиех. Эппин ҫак ырӑ ӗҫре те
ҫавнашкалах вашават пулӑр.
8 Ҫакна эпӗ сире хушса каламастӑп. Ыттисен
тӑрӑшулӑхӗ ҫинчен каласа эпӗ сирӗн юратулӑхӑр
чӑн е чӑн мар пулнине тӗрӗслесшӗн. 9 Мӗншӗн
тесен эсир Иисус Христос Хуҫамӑрӑн ырӑ кӑмӑлне
пӗлетӗр. Вӑл, чап тӗлӗшӗнчен пуянскер, Хӑйне
мӗскӗнлетсе сире мухтавпа пуйтарас тесе,
сирӗншӗн мӗскӗне тухнӑ. 10 Сире хамӑн шухӑшӑма
пӗлтеретӗп: ҫак ырӑ ӗҫе вӗҫлени сирӗншӗн
хӑвӑршӑнах усӑллӑ пулӗ. Эсир тин ҫеҫ пулӑшма
пуҫланӑ ҫынсем мар-ҫке-ха, пӗлтӗртенпех ҫав
шухӑш-ӗмӗтпе пурӑнатӑр. 11 Ӗнтӗ хӑвӑр хытӑ
ӗмӗтленнине пултарнӑ таран пурнӑҫласа, халӗ ҫав
ӗҫе туса пӗтерӗр. 12 Пулӑшма тӑрӑшни пулсассӑн,
Турӑ ӑна камӑн мӗн ҫуккине кура мар, камӑн мӗн
пуррине кура йышӑнӗ. 13 Ку вӑл сирӗн пурӑнӑҫӑра
йывӑрлатса ыттисене ҫӑмӑллӑх парассине
пӗлтермест, сӑмах кунта хире-хирӗҫле пӗр танлӑх
пирки пырать. 14 Паян эсир, ытлашшине парса,
вӗсен ҫитменнине ҫитеретӗр, сирӗн ҫитмен чухне
вӗсем ытлашшине парӗҫ, вара пӗр танлӑх пулӗ.
15 Ҫырнинче ун пирки ҫапла каланӑ: «Нумай пухнин
ытлашши пулман, сахал пухнин ҫитменни пулман».

### Титпа юлташӗсем

16 Тита сирӗншӗн ҫав тери тӑрӑшмалла чун-
чӗреллӗ тунӑшӑн Турра тавах. 17 Чӑн та ӗнтӗ, эпӗ
ӑна каланӑччӗ, анчах вӑл, питӗ тӑрӑшуллӑскер,
сирӗн патӑра пыма хӑй кӑмӑл турӗ. 18 Унпа пӗрле
эпир тата тепӗр тӑвана яратпӑр. Ырӑ Хыпар

вĕрентме ăста пулнăран ăна пур ĕненекен
ушкăнсем те мухтаççĕ. [19] Тата ĕненекен ушкăнсем
те ăна çак ыркăмăллăх ĕçĕнче пирĕн юлташ пулма
суйларĕç. Ыркăмăллăх ĕçне эпир Хуçа Турă
мухтавĕшĕн тата эсир тăрăшнине кура тăватпăр.
[20] Хамăра нумай укçа-тенкĕ шанса панине пĕлсе,
сăмах илтесрен унпа тирпейлĕ усă курма
тăрăшатпăр, [21] мĕншĕн тесен ырришĕн пирĕн Хуçа
Турă умĕнче кăна мар, çынсем умĕнче те
тăрăшмалла. [22] Тата вĕсемпе пĕрле эпир хамăрăн
тепĕр тăвана та ятăмăр, унăн тăрăшулăхне тĕрлĕ
лару-тăрура пĕрре мар тĕрĕсленĕ. Вăл сире халĕ
питĕ шанать, çавăнпа тата ытларах тăрăшать. [23] Тит
пирки çакна каламалла: вăл манăн пулăшаканăм
тата сирĕн патăрти ĕçри юлташăм. Ытти
тăванăмăрсем те Христоса мухтава кăлараççĕ,
вĕсем – ĕненекен ушкăнсем суйласа янăскерсем.
[24] Çапла вара, вĕсене хăвăр юратнине тата эпир
сирĕнпе тĕрĕсех мухтаннине ĕненекен ушкăнсем
умĕнче кăтартса парăр.

### Ĕненекенсене пулăшасси

9 Тепĕр тесен, эпĕ сирĕн патăра ĕненекенсене
пулăшасси çинчен çырни кирлех те мар,
[2] мĕншĕн тесен эсир тăрăшнине пĕлетĕп. Ахаия
çыннисем пулăшу пама пĕлтĕртенпех хатĕр тесе
эпĕ ĕнтĕ Македонири ĕненекенсем умĕнче
мухтанса та илтĕм. Эсир хыпса çунни нумайăшне
хавхалантарчĕ. [3] Анчах та эпĕ сире ку тĕлĕшĕнчен
мухтани пустуй ан пултăрччĕ тесе, каланă пекех,
сире хатĕрлесе çитермешкĕн сирĕн патăра
тăвансене ятăм. [4] Ахальлĕн, пирĕнпе пĕрле
Македонири ĕненекенсенчен кам та пулин сирĕн
патăра пырсан, сирĕн пулăшăвăр хатĕр маррине
курсан, сире мухтаса çапла шаннăшăн пире намăс
пулĕ. Хăвăр намăс курасси пирки шарламастăп та.
[5] Çавăнпа та тăвансене сирĕн патăра маларах çитсе
хăвăр пухма шантарнă пулăшăва хатĕрлесе
çитерме ӳкĕте кĕртес терĕм. Эсир пулăшни
хистесех илни пек мар, ырă сунса пани пек
пултăрччĕ терĕм.
[6] Çакна ан манăр: вăрлăхне сахал акакан сахал
вырса илĕ, нумай акакан вара нумай вырса илĕ.
[7] Кашниех хĕрхенмесĕр, хăйĕн ирĕкĕпе, чунтан-
кăмăлтан патăр, мĕншĕн тесен Турă савăнса
паракана юратать. [8] Турă хăватлă: сирĕн яланах пур
тĕлĕшĕнчен те çителĕклĕ пурăнса, тĕрлĕрен ырă
ĕçсем тума май пултăр тесе, Вăл сире тĕрлĕ
ырăлăхне туллиех парĕ. [9] Çырнинче çапла каланă:
«вăл салатса пĕтерни, кĕлмĕçсене валеçсе панă;
унăн тĕрĕслĕхĕ ĕмĕртен ĕмĕре пырать». [10] Акаçăна
акмашкăн вăрлăх, çимешкĕн çăкăр Параканĕ сире
акмашкăн нумай вăрлăх парĕ, сирĕн ырă
кăмăллăхăртан тулăх тыр-пул ӳстерĕ. [11] Яланах
хĕрхенмесĕр пулăшмашкăн Турă сире пур
тĕлĕшĕнчен те пуйтарĕ. Пирĕн урлă пулса иртекен
ырă кăмăллăхшăн çынсем Турра тав тăвĕç.
[12] Мĕншĕн тесен çак ĕç – ĕненекенсене пулăшасси –
вĕсен çитменнине çитерет кăна мар, чылайăшĕн
чунĕнче Турра туллин тав тăвас ĕмĕт çуратать.
[13] Вĕсем, сирĕн ĕçĕн уссине курсан, эсир Христосăн
хăвăр йышăннă Ырă Хыпарĕ хушнине тунăшăн,
пурри-çуккине хăйсемпе те, ытти ĕненекенсемпе те
чунтан пайланăшăн Турра мухтĕç. [14] Турă ырăлăхĕ
сирĕнте туллиех пулнишĕн сире кăмăлласа, вĕсем
сирĕншĕн кĕлтăвĕç. [15] Эппин, калама çук пысăк
ырăлăх панишĕн Турра тав!

### Павел хăйĕн апостол ĕçне хӳтĕлени

10 Эпĕ, Павел, сирĕнпе куçа-куçăн чухне
йăвашскер, сирĕнтен аякра чухне хаярскер,
сире Христос йăвашлăхĕпе тата хĕрхенӳлĕхĕпе
ӳкĕтлетĕп. [2] Сирĕн патăра пырсассăн мана хаяр та
çирĕп пулма сăлтав ан парăрах. Хăш-пĕрисен
шухăшĕпе, эпир хамăра çак тĕнче çыннисем пекех
тыткалатпăр имĕш; вĕсене вара çирĕплĕхĕме
кăтартас шухăш пур манăн. [3] Мĕншĕн тесен эпир
çак тĕнчерех пурăнатпăр пулин те, Ырă Хыпаршăн
çак тĕнчерисен мелĕсемпе çапăçмастпăр. [4] Пирĕн
çар хатĕрĕ ку тĕнчери мар, Турă хăвачĕпе вăл
крепоçсене те аркатаять. Унпа эпир хамăра
хирĕçле ăслă пек шухăшсене те, [5] Турра пĕлессине
хирĕçлекен кирек епле мăнкăмăллăха та
аркататпăр; кирек епле шухăш-ĕмĕте те Христос
ирĕкне пăхăнтармашкăн тыткăна илетпĕр. [6] Эсир
Христоса пĕтĕм чун-чĕререн пăхăнсан вара эпир
кирек епле итлеменлĕхшĕн те явап тыттарма
хатĕр.
[7] Çынна тулашĕнчен пăхса кăна хаклатăр-и? Кам
хăйне хăй Христоспа пĕрлĕхлĕ тет, çав, хăйĕнпе
танлаштарса, пирĕн çинчен те хăйĕн пекех
Христоспа пĕрлĕхлĕ тесе шутлатăр. [8] Эпĕ хамăра
Хуçамăр панă ирĕкпе тата ытларах мухтанас пулсан
та, намăса юлмăп; пире çав ирĕке чунăрсене
аркатма мар, çирĕплетме панă. [9] Эпĕ сире
çырусемпе кăна хăратнăн ан туйăнтăр тата.
[10] «Çырăвĕсенче вăл хаяр та паттăр, анчах та куçа-
куçăн калаçнă чухне халсăр, сăмахĕ те унăн ниме
тăмасть», – теççĕ хăшĕ-пĕрисем. [11] Унашкаллисем
çакна пĕлсе тăччăр: аякран эпир мĕн каласа
çыратпăр, куçкĕрет ĕçĕмĕрте те çавнашкалах.
[12] Хамăра эпир хăйсене мăнна хуракансемпе
танлаштарма е пĕр картлашка çине лартма
хăяймастпăр. Вĕсем хăйсене хăйсем хакласа,
хăйсен виçипе виçсе, ăссăрла хăтланаççĕ. [13] Эпир
виçесĕр мухтанмастпăр. Мухтанмалли ĕçĕмĕрĕн
анине пире Турă чикĕлесе панă. Эсир те çав ана
çинчех. [14] Енчен те эпир сирĕн патăра Христосăн
Ырă Хыпарне çитермен пулсан, пире чиккине
пĕлмесĕр мухтанатăр теме пулатчĕ, анчах та эпир
Ырă Хыпар пĕлтерсе сирĕн пата та çитнĕ вĕт-ха.
[15] Чикĕ урлă каçса ыттисен ĕçĕпе мухтанас шухăш
вара пирĕн çук. Анчах та ĕненĕвĕр çирĕпленсе
пынăçемĕн сирĕн хушшăрти ĕçĕмĕр сулмаклăрах
пуласса шанатпăр. [16] Вара эпир Ырă Хыпара ытти
çĕр-шывсенче те ӳкĕтлесе вĕрентĕпĕр, паллах, унта

ыттисем тунӑ ӗҫпе, янттипе, эпир мухтанмӑпӑр.
17 Мухтанас текен Хуҫа Турӑпа мухтантӑр. 18 Хӑйне
хӑй ырлакан ҫын мухтавлӑ мар, Хуҫа Турӑ ырлакан
ҫын мухтавлӑ.

### Павел тата суя апостолсем

11 Мухтанса ӑссӑрла тыткаланишӗн эсир мана
кӑштах каҫарас пулсанччӗ! Тепӗр тесен, эсир
мана каҫарнине пӗлетӗп. 2 Эпӗ сире Турӑ
кӗвӗҫӗвӗпе кӗвӗҫсе чунӑма ҫунтаратӑп, мӗншӗн
тесен эпӗ сире пӗртен-пӗр ар валли – Христос
валли – ҫураҫрӑм, сире Ун умне таса хӗр халлӗн
тӑратасчӗ тетӗп. 3 Анчах та ҫӗлен чееленсе Евӑна
улталанӑ пек, эсир те, Христоса тӳрӗ кӑмӑлпа
ӗненессине пӑрахса, ӑсӑра пӑсасран хӑратӑп.
4 Мӗншӗн тесен кам та пулин сирӗн патӑра пырса
эпир вӗрентнӗ Иисусран урӑхли ҫинчен вӗрентсен
– эсир ҫав ҫынна пачах та хирӗҫлеместӗр. Эпир
илтернӗ Сывлӑша мар, урӑхлине сӗнсен – эсир
илетӗр. Эпир вӗрентнӗ Ырӑ Хыпара мар, урӑхлине
пӗлтерсен, эсир йышӑнатӑр. 5 Аслӑ текен
апостолсенчен эпӗ хама кӑшт та кӗҫӗне хумастӑп.
6 Сӑмах ӑсти мар пулин те, хама пӗлӳсӗр тееймӗп.
Тепӗр тесен, ҫакна эпир сире тӗрлӗ лару-тӑрура
тӗрлӗ майпа кӑтартса патӑмӑр.
7 Эпӗ сире Туррӑн Ырӑ Хыпарне тӳлевсӗр-мӗнсӗр
ӳкӗтлесе вӗрентрӗм. Сире асла кӑларас тесе хама
мӗскӗнлетсе ҫылӑха кӗтӗм-ши вара? 8 Сирӗншӗн
тӑрӑшасчӗ тесе эпӗ ытти ӗненекен ушкӑнсем
паракан пулӑшупа пурӑнтӑм, вӗсене
тӑккаланмалла турӑм. Сирӗн патӑрта чухне ҫити-
ҫитми пурӑнтӑм пулин те, эпӗ никама та йывӑрлӑх
кӳмерӗм. 9 Мӗншӗн тесен Македонирен килнӗ
ӗненекен тӑванӑмсем манӑн ҫитменнине ҫитерсех
тӑчӗҫ. Сире йывӑрлатас марччӗ тесе эпӗ пур
тӗлӗшӗнчен те тӑрӑшрӑм, тӑрӑшӑп та. 10 Ӑшӑмри
Христос чӑнлӑхӗпе калатӑп: пӗтӗм Ахаия тӑрӑхӗнче
ҫав мухтавӑма манран никам та туртса илеймӗ.
11 Мӗншӗн ҫапла тӑватӑп-ха? Тен, сире
юратманран? Ку апла маррине Турӑ пӗлет, ҫапах та
халиччен мӗнле туса пурӑнтӑм, малашне те ҫаплах
тӑвӑп. 12 Хӑйсем мухтанакан ӗҫӗнче пирӗн пек
пулмашкӑн сӑлтав шыракансене унашкал сӑлтав
туса парас марччӗ. 13 Ҫавнашкал ҫынсем – суя
апостолсем, чеен ӗҫлесе вӗсем хӑйсене Христос
апостолӗсем пек кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ. 14 Кунтан
тӗлӗнме кирлех те мар, мӗншӗн тесен шуйттан хӑй
те ҫутӑ ангелӗ пек курӑнма тӑрӑшать. 15 Ҫавӑнпа та
шуйттан тарҫисем хӑйсене чӑнлӑх тарҫисем пек
кӑтартма тӑрӑшнинчен ним тӗлӗнмелли те ҫук.
Вӗсем ӗҫне кура вӗҫне тупӗҫ.

### Апостол пулнӑшӑн Павел асап курни

16 Ҫакна татах калам: кам та пулин мана ӑссӑр
тесе ан шутлатӑрччӗ. Ун пек шухӑшлакан пур
пулсан, мухтанкалатӑр ара тесе, мана ӑссӑр
вырӑнне те пулин йышӑнсамӑр. 17 Каласса калатӑп-
ха, анчах ку сӑмахсем Хуҫа Турӑран мар. Ҫавнашкал
мухтанма хӑйса эпӗ ӗнтӗ ӑссӑрла хӑтланатӑп.
18 Нумайӑшӗ ку тӗнчере хӑйсен мӗн пуррипе
мухтанаҫҫӗ пулсан, эпӗ те мухтанам. 19 Мӗншӗн
тесен эсир, ӑслӑ-тӑнлӑ ҫынсем, леш ӑссӑрсене
чиперех тӳсетӗр. 20 Хӑвӑра кам та пулин
пусмӑрланине те, алӑри ҫӑкӑра туртса илнине те,
ҫаратнине те, хӑвӑрпа мӑнкӑмӑллӑ тыткаланине те,
ҫупкӑ ҫитернине те эсир чӑтатӑр. 21 Намӑс пулин те,
йышӑнмах тивет: ун пек хӑтланма эпир
пултараймарӑмӑр. Ӑссӑрла калам: ҫынсем мӗнпе те
пулин мухтанма хӑяҫҫӗ пулсан, эпӗ те хӑям. 22 Вӗсем
еврей-и? Эпӗ те. Вӗсем Израиль ҫыннисем-и? Эпӗ
те. Авраам тӑхӑмӗсем-и? Эпӗ те. 23 Вӗсем Христос
тарҫисем-и? Ӑссӑрла калатӑп: эпӗ тарҫӑран та
тарҫӑрах. Эпӗ вӗсенчен чылай нумайрах ӗҫлерӗм,
пайтах патак ҫирӗм, тӗрмесенче нумайрах лартӑм,
тӑтӑшах вилӗмпе куҫа-куҫӑн пултӑм. 24 Иудейсем
мана пилӗк хутчен чӗн пушӑпа вӑтӑр тӑхӑр хут
ҫаптарчӗҫ. 25 Виҫӗ хутчен мана патакпа хӗнерӗҫ.
Пӗррехинче кӑшт кӑна чулпа пере-пере
вӗлеретчӗҫ. Виҫӗ хутчен караппа путма тӑтӑм,
талӑка яхӑн мана тинӗс хумӗсем лӑскарӗҫ. 26 Эпӗ
нумай ҫул ҫӳрерӗм, нумай хура-шур куртӑм: юхан
шывсем ҫинче те, вӑрӑ-хурахсенчен те, хамӑр
халӑх ҫыннисенчен те, ытти халӑх ҫыннисенчен те,
хулара та, пуш хирте те, тинӗсре те, суя
тӑвансенчен те. 27 Кун-ҫулӑм халтан кайиччен
ӗҫлесе, ҫывӑрнӑ-ҫывӑрман, ҫинӗ-ҫимен, ӗҫнӗ-ӗҫмен
иртрӗ; выҫӑпа, сивӗпе, тумтирсӗр пӗрре мар
аптӑрарӑм. 28 Тем те пӗр курнисӗр-тӳснисӗр пуҫне,
ман патӑмра тата куллен халӑх, манӑн мӗн пур
ӗненекен ушкӑншӑн та тӑрӑшмалла. 29 Халтан
каяканпа пӗрле эпӗ халсӑр юлатӑп, ҫылӑха кӗрес
ҫынсемшӗн эпӗ те чуна ҫунтаратӑп.
30 Мухтанас тесен манӑн хамӑн халсӑрлӑхӑмпа
мухтанмалла. 31 Эпӗ суйманнине Иисус Христос
Хуҫамӑрӑн ӗмӗр-ӗмӗр мухтавлӑ Ашшӗ тата Турри
пӗлет. 32 Эпӗ Дамаск хулинче чухне Арета патшан
унти пуҫлӑхӗ мана тытас тесе хула хапхи умне
хурал тӑратрӗ. Мана лӑпӑ ҫине лартса хӳме ҫинчи
чӳречерен вӗренпе антарса тартрӗҫ, ҫапла эпӗ
унӑн аллинчен хӑтӑлса юлтӑм.

### Турӑ кӑтартнӑ курӑнусемпе уҫӑлусем

12 Усӑллӑ мар пулин те, татах мухтанам-ха. Ӗнтӗ
хама Хуҫа Турӑ кӑтартнӑ курӑнусемпе
уҫӑлусем ҫинчен каласа парам. 2 Эпӗ Христоса
ӗненекен пӗр ҫынна паллатӑп. Вун тӑватӑ ҫул
каялла ҫавна (те ӳт-пӗвне, те чунне – пӗлейместӗп,
Турӑ кӑна пӗлет) пӗлӗтӗн виҫҫӗмӗш хутне ҫӗклесе
кайнӑ. 3 Тата ҫав ҫын ҫинчен ҫакна пӗлетӗп. Те ӳт-
пӗвӗпе, те чунӗпе – пӗлейместӗп, Турӑ кӑна пӗлет,
4 ӑна рая ҫӗклесе кайнӑ. Вӑл унта этем каласа
кӑтартайми, калама та юраман сӑмахсем илтнӗ.
5 Ҫавӑн пек ҫынпа мухтанма та пултаратӑп, хампа
мухтанаймӑп, манӑн мухтанмалли те халсӑрлӑхӑм
кӑна. 6 Тепӗр тесен, мухтансан та ӑссӑр пек

курӑнмӑп, мӗншӗн тесен чӑннине калӑп. Анчах та
эпӗ шарламӑп – ахальлӗн кам та пулин ман пирки
хӑй курнинчен те, эп каланинчен те ытларах
шухӑшлӗ. 7 Хама Турӑ нумай уҫса панипе
мӑнкӑмӑлланса каясран вара чир-чӗр сӑнни ӳт-
пӗвӗме витерчӗ. Мӑнкӑмӑлланса каясранах мана
тертлентерме шуйттан ангелне ячӗҫ. 8 Ӑна манран
сиртӗр тесе эпӗ Хуҫа Турра виҫӗ хутчен
тархасларӑм. 9 Анчах та Хуҫамӑр мана ҫапла
каларӗ: «Эпӗ сана ырӑлӑх патӑм, унпа сана ҫитет,
мӗншӗн тесен Манӑн хӑватӑм халсӑрлӑхра туллин
палӑрать». Ҫавӑнпа та, ӑшӑмри Христос хӑвачӗ
яланах пултӑр тесе, эпӗ халсӑрлӑхӑмпа
малтанхинчен те ытларах мухтанатӑп. 10 Ӗнтӗ эпӗ
халсӑр чухне, хама кӳрентернӗ чухне, нушаллӑ
чухне, хама хӗсӗрленӗ чухне, Христосшӑн асап
курнӑ чухне хӗпӗртетӗп. Мӗншӗн тесен халсӑр
чухне эпӗ хӑватлӑ.

### Павел Коринфри ӗненекен ушкӑншӑн пӑшӑрханни

11 Ӗнтӗ эпӗ мухтанса ӑссӑрах тухатӑп. Эсир хӑвӑр
мана ҫавӑн патне ҫитертӗр. Мана сирӗн
ырламаллаччӗ, мӗншӗн тесен, ним тӗшне те
тӑмастӑп пулин те, аслӑ текен апостолсенчен эпӗ
нимӗнпе те кая мар. 12 Хам апостол пулнине эпӗ
сирӗн умӑрта вӑйлӑ чӑтӑмлӑхпа, тӗрлӗрен
тӗлӗнмелле ӗҫсемпе, паллӑсемпе тата хӑватсемпе
ҫирӗплетсе патӑм. 13 Ытти ӗненекен ушкӑнсемпе
танлаштарсан, ҫитменни сирӗн мӗн пулчӗ? Эпӗ
сире йывӑрлӑх кӳмерӗм, ҫавӑ кӑна. Эппин, ҫав
айӑпшӑн каҫарсамӑр мана. 14 Ӗнтӗ эпӗ сирӗн
патӑра виҫҫӗмӗш хут пымашкӑн хатӗр. Эпӗ сире
йывӑрлӑх кӳмӗп, мана сирӗнтен янтти кирлӗ мар,
эсир хӑвӑр кирлӗ. Ачисен ашшӗ-амӑшӗ валли тупра
пухмалла мар, ашшӗ-амӑшӗн ачисем валли
пухмалла. 15 Эпӗ сире питӗ юрататӑп пулин те, эсир
мана юратсах каймастӑр. Апла пулин те, сирӗншӗн
савӑнсах тӑкакланӑп, сирӗн чунӑршӑн хама
пуҫӗпех парӑп. 16 Эпӗ сире тӑкаклантарман пулсан
та, тен, чеескер, сиртен улталаса илнӗ тесе
шутлатӑр? 17 Сирӗн патӑра янӑ ҫынсем урлӑ эпӗ
хамшӑн тӑрӑшса сирӗнтен мӗн те пулин илтӗм-и?
18 Эпӗ Тита сирӗн патӑра кайма ӳкӗте кӗртрӗм, унпа
пӗрле тӑвансенчен пӗрне ятӑм. Тит сирӗнтен мӗн
те пулин илчӗ-и? Эпир унпа пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ
мар-им вара? Пӗр ҫул-йӗрпех ҫӳреместпӗр-им
вара?
19 Эпир сирӗн умӑрта тӳрре тухма тӑрӑшатпӑр
тесе шутламастӑр-и тата? Эпир, Христоспа
пӗрлӗхлӗ пулса, мӗн каланине Турӑ умӗнче
калатпӑр. Эй, савнӑ ҫыннӑмсем! Ҫакна эпир йӑлтах
сирӗн ӗненӗвӗре ҫирӗплетес тесе тӑватпӑр. 20 Эпӗ
акӑ мӗншӗн шикленетӗп: сирӗн патӑра пырӑп та,
эсир эпӗ ӗмӗтленнӗ пек пулмӑр, эпӗ те эсир
ӗмӗтленнӗ пек пулмӑп. Сирӗн хушшӑрта харкашу,
кӗвӗҫӳ, тарӑху, хирӗҫӳ, элек, сӑмах сарни,
мӑнкӑмӑллӑх, йӗркесӗрлӗх пуррине манӑн курас
марччӗ. 21 Сирӗн патӑра пырсассӑн Туррӑм мана
каллех мӗскӗнрен те мӗскӗне хӑварасран
шикленетӗп. Ирсӗр ӗҫ туса, аскӑн та пӑсӑк пурӑнса
ҫылӑха кӗнӗ хыҫҫӑн ӳкӗнмен нумай ҫыншӑн манӑн
хӳхлесе йӗмелле ан пултӑрччӗ.

### Ҫыру вӗҫӗнчи асӑрхаттарусемпе саламсем

13 Сирӗн патӑра виҫҫӗмӗш хут пыратӑп ӗнтӗ.
«Икӗ е виҫӗ ҫын кӑтартса парсан, кирек епле
айӑплав сӑмахӗ те чӑн шутланать», – тенӗ
Ҫырнинче. 2 Эпӗ сире иккӗмӗш хут пынӑ чухнех,
малтанах асӑрхаттарнӑччӗ; халӗ каллех, хам
сирӗнпе мар чухне, маларах ҫылӑхлӑ пурӑннисене
те, ыттисене те тепре асӑрхаттарса ҫыратӑп.
Пырсассӑн никама та каҫару пулмӗ. 3 Христос
хӑвӑрпа ман урлӑ калаҫнине ӗнентерме ыйтатӑр
эсир. Сирӗншӗн Вӑл вӑй-хӑватне шеллемест, Унӑн
вӑй-хӑвачӗ сирӗнте палӑрать. 4 Ӑна халсӑр чухне
пӑталанӑ пулин те, халӗ Вӑл Турӑ хӑвачӗпе чӗрӗ.
Эпир те ҫавнашкалах, Унпа пӗрлех халсӑр; анчах
та, Турӑ хӑвачӗпе, сирӗн хушшӑрта Унӑн
чӗрӗлӗхӗпе палӑрӑпӑр.
5 Хӑвӑртан хӑвӑр ыйтӑр: ҫирӗп ӗненетӗр-и?
Хӑвӑра хӑвӑр тӗрӗслесе пӑхӑр. Е хӑвӑр ӑшӑрти
Иисус Христоса та пӗлейместӗр? Пӗлейместӗр
пулсан, тӗрӗслев витӗр тухаймарӑр пулать вара.
6 Хамӑр пирки калас пулсан, эпир тӗрӗслев витӗр
тухнине хӑвӑрах ӑнланса илессе шанатӑп. 7 Сирӗн
нимӗнле усал ӗҫ те тумалла ан пултӑрччӗ тесе
Турра кӗлтӑватпӑр. Ҫакна эпир хамӑра тӗрӗслев
витӗр тухнӑ пек кӑтартасшӑн тумастпӑр. Эпир
тӗрӗслев витӗр тухайман пек туйӑнсан та, сирӗн
ырринех тумалла пултӑрччӗ тетпӗр. 8 Мӗншӗн
тесен эпир чӑнлӑха хирӗҫ кайма пултараймастпӑр,
чӑнлӑх майлӑ пулма ҫеҫ пултаратпӑр. 9 Эпир хамӑр
халсӑр чухне эсир вӑйлӑ пулнишӗн савӑнатпӑр.
Сирӗн чун-чӗмпе аталанса ҫитмелле пултӑрччӗ
тесе кӗлтӑватпӑр та ӗнтӗ. 10 Сирӗн патӑра пырсан
Хуҫамӑр панӑ ирӗкӗмпе сире ятламалла ан
пултӑрччӗ манӑн. Ҫав ирӗкӗме аркатмашкӑн мар,
пултармашкӑн панӑ, ҫавӑнпа хам пыриччен ҫырса
яратӑп та ӗнтӗ.
11 Эй, тӑвансем! Ҫыру вӗҫӗнче ҫакна калам:
савӑнӑр, чун-чӗмпе пахаланӑр, пӗр-пӗрне
хастарлатӑр, пӗр шухӑшлӑ пулса, килӗштерсе
пурӑнӑр. Вара юратулӑхпа канӑҫлӑх Турри сирӗнпе
пулӗ. 12 Пӗр-пӗрне сӑваплӑн, тӑванла чуптуса
саламлӑр. Сире мӗн пур ӗненекенсем салам яраҫҫӗ.
13 Сирӗнте пурсӑрта та Иисус Христос Хуҫамӑрӑн
ырӑлӑхӗ, Атте Турӑ юратулӑхӗ тата Святой Сывлӑш
паракан тӑванлӑх пултӑр. Аминь.

# Галатсем патне

### Саламлани

1 Çын кăмăлĕпе те, этем ирĕкĕпе те мар, Иисус
Христоспа Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнă Атте
Турă суйласа илнипе апостола тухнă Павелран
2 тата кунта манпа пĕрлехи мĕн пур ĕненекен
тăванăмăрсенчен – Галатири ĕненекен ушкăнсене.
3 Сире Атте Туррăмăрпа Иисус Христос Хуçамăрăн
ырăлăхĕпе канăçлăхĕ пултăр. 4 Пире çак тĕнче
усаллăхĕнчен хăтарас тесе Иисус Христос пирĕн
çылăхсемшĕн Атте Туррăмăр ирĕкĕпе Хăйĕн
пурăнăçне панă. 5 Турă ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă пултăр.
Аминь.

### Урăхла Ырă Хыпар çук

6 Эсир хăвăра Христос ырăлăхĕпе чĕнсе
илекентен пăрăнса ырă хыпар текен урăхла
вĕрентӳ хыççăн ытла та час кайнинчен эпĕ
тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп. 7 Анчах та урăхла Ырă
Хыпар çук! Сире иккĕлентерсе ярса Христосăн Ырă
Хыпарне пăсас текен çынсем кăна пур. 8 Сире кам
та пулин эпир маларах вĕрентнинчен урăхларах
вĕрентес пулсассăн – çапла вĕрентекенĕ хăть эпир
пулар, хăть тӳперен аннă ангел пултăр – ылхан
çиттĕр ăна! 9 Эпир сире малтан пĕрре каланăччĕ,
халĕ татах тепре калам: хăвăр йышăннă Ырă
Хыпара мар, урăхлине вĕрентекене ылхан пултăр.
10 Халĕ эпĕ этем кăмăлне е Турă кăмăлне юрасшăн
тăрăшатăп-ши? Тен, эпĕ çынсене юрас тесе
тăрăшатăп? Эпĕ халиччен çынсене юрас тесе
пурăннă пулсан Христос чури пулмăттăм.

### Павел хăй апостола епле тухни çинчен калани

11 Эй, тăвансем, сире хыпарлатăп: эпĕ сире
вĕрентнĕ Ырă Хыпар этемĕн мар. 12 Эпĕ ăна
этемрен илтмен, этемрен вĕренмен, ăна мана
Иисус Христос Хăй пĕлтернĕ. 13 Эпĕ иудей тĕнне
тытса тăнă чухне еплерех пурăнни çинчен эсир
илтнĕ ĕнтĕ: эпĕ, Туррăн Чиркĕвне пĕтерес тесе,
ĕненекенсене хаяррăн хĕсĕрлеттĕм.
14 Аттемĕрсенчен юлнă йăла-йĕркесемшĕн эпĕ
виçесĕр тăрăшаттăм, хамăр иудей тĕнĕшĕн ман пек
çунаканни тантăшсем хушшинче те урăх çукчĕ.
15 Анчах та ырă кăмăллă Турă мана аннем варĕнчех
суйласа илнĕ пулнă. Турă мана Хăйĕн Ывăлĕ камне
уçса пачĕ, чăн Турра пĕлмен халăхсене Ывăлĕ
çинчен Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳреме мана Хăйĕн
ырăлăхĕпе чĕнсе илчĕ. Ун чухне те эпĕ этемсенчен
ăс ыйтма васкамарăм, 17 хамран маларах апостола
тухнисем патне Иерусалима та каймарăм. Эпĕ
тӳрех Аравине кайрăм, унтан каллех Дамаска
таврăнтăм.
18 Кайран, тепĕр виçĕ çултан, эпĕ Петрпа тĕл
пулма Иерусалима кайрăм, ун патĕнче икĕ эрнене
яхăн пурăнтăм. 19 Хуçамăрăн тăванĕ Иаковсăр пуçне
эпĕ пĕр апостолпа та курса калаçман. 20 Турă
умĕнче калатăп: сирĕн пата çырнинче суеçтерни
çук. 21 Унтан эпĕ Сирипе Килики çĕрĕсене кайрăм.
22 Иудейăра, Христоса ĕненекен ушкăнсенче, мана
никам та палламастчĕ. 23 Вĕсем хăйсене малтан
хĕсĕрлекен, ĕненĕве пĕтерес текен çын халĕ хăй
çав тĕне вĕрентсе çӳрет тенине кăна илтнĕ. 24 Вара
вĕсем Турра маншăн мухтанă.

### Ытти апостолсем Павела хăйсен йышне илни

2 Унтан, вун тăватă çул иртсен, эпĕ Варнавăпа
каллех Иерусалима кайрăм. Хамăрпа пĕрле
эпир Тита та илтĕмĕр. 2 Каясса эпĕ Турă уçса панипе
кайрăм. Вара унта ĕненекенсене, уйрăмах ятлă-
сумлисене, хам ытти халăхсене ӳкĕтлесе
вĕрентекен Ырă Хыпар çинчен каласа патăм. Çакна
эпĕ хам тăрăшни харам пулмарĕ-ши тесе турăм.
3 Вара вĕсем манпа пĕрле пынă Тита та, вăл грек
пулин те, ӳт кастарма хистемерĕç. 4 Пирĕн
хушшăмăрта вăрттăн йĕрлекен, тăвансем пек
курăнма тăрăшакан сăнавçăсем те пулчĕç. Вĕсем
Иисус Христоса ĕненнипе тупнă ирĕкĕмĕр пирки
вăрттăн пĕлсе пире пăхăнтарасшăн пулнă. 5 Анчах
та эпир, Ырă Хыпар чăнлăхне сирĕн валли упраса
хăварас тесе, вĕсен сăмахĕсемпе килĕшмерĕмĕр,
вĕсене кăшт та парăнмарăмăр. 6 Ятлă-сумлă
ĕненекенсем пирки вара çакна каламалла: вĕсем
ĕлĕкрех тем тери чаплă пулнă пулсан та – маншăн
пурпĕрех. Турă çынна кам пулнине кура
хакламасть. Вĕсем, ятлă-сумлисем, вĕрентĕвĕм
çумне урăх нимĕн те хушма каламарĕç. 7 Пачах та
урăхла, Петра иудейсене вĕрентме епле Ырă Хыпар
шанса панă, мана та çавнашкалах ытти халăхсене
вĕрентме Ырă Хыпар шанса панине вĕсем куçкĕрет
курчĕç. 8 Мĕншĕн тесен Петра ӳт кастарнисем
хушшинче вĕрентме пулăшакан Турă мана та ытти
халăхсем хушшинче Ырă Хыпар пĕлтерсе
çӳремешкĕн пулăшса пычĕ. 9 Эпĕ Турă панă
тивлетпе апостол тивĕçне туса тăнине пĕлсен,
Иаков, Кифа тата Иоанн, тĕне тытса тăракан çак
хисеплĕ улăпсем, Варнавăпа иксĕмĕре юлташла

алă тытрĕç. Ку ĕнтĕ эпир ытти халăхсем патне каяс
пирки, хăйсем вара ӳт кастарнисем патне каяс
пирки килĕшсе татăлни пулчĕ. 10 Пире вĕсем
чухăнсене пулăшса тăма кăна хушрĕç, эпĕ çавна
пурнăçласа пыма тăрăшрăм та.

### Павел Петра ӳпкелени

11 Петр Антиохие пырсан эпĕ ăна йăнăш çулпа
кайнăран уççăнах хирĕçлеме пуçларăм. 12 Мĕншĕн
тесен Иаков янă çынсем килсе çитиччен вăл
маларах урăх халăх çыннисемпе пĕрле ĕçсе çиетчĕ,
анчах та вĕсем килсе çитсен иудейсенчен
шикленнипе урăх халăх çыннисенчен ютшăнса-
пăрăнса çӳре пуçларĕ. 13 Ăна кура ытти иудейсем те
хăйсене икĕ питлĕ тыткала пуçларĕç, çапла
икĕпитленессинчен Варнава та хăтăлса юлаймарĕ.
14 Эпĕ вара, вĕсем Ырă Хыпар чăнлăхĕн çулĕпе тӳрĕ
пыманнине курсан, Петра пурин умĕнчех çапла
каларăм: «Эсĕ иудей пуççăнах иудей йăли-йĕркипе
мар, ытти халăхсен йăли-йĕркипе пурăнатăн
пулсан, епле-ха тата ытти халăхсене иудей йăли-
йĕркипе пурăнма хистетĕн?»

### Ĕненĕве пула иудейсемпе ытти халăхсем çăлăнăç тупни

15 «Эпир ытти халăхсенчен çуралнă çылăхлă
çынсем мар, эпир иудей пулса çуралнă. 16 Çапах та
çын саккун хушнине пурнăçласа пынипе Турă
умĕнче тӳрре тухаймасса, Иисус Христоса
ĕненнипе çеç тӳрре тухасса пĕлсен, эпир те Христос
Иисуса ĕнентĕмĕр. Ĕнтĕ эпир саккун хушнине туса
мар, Христоса ĕненнипе тӳрре тухса пыратпăр,
мĕншĕн тесен саккун хушнине пурнăçласа пынипе
пĕр çын та тӳрре тухас çук. 17 Енчен те эпир хамăр
та, Христоспа пĕр пулса тӳрре тухма
тăрăшаканскерсем, çылăхлă пулсан, Христос
çылăхшăн ĕçлесе тăракан пулса тухать-и вара?
Паллах, апла мар. 18 Енчен те эпĕ хам пăснине
çĕнĕрен тăватăп пулсан, эппин мана айăпламалла.
19 Турăшăн пурăнас тенипе манăн саккуна пăсма
тивет. Çапла вара, саккун тăрăхах эпĕ саккуншăн
вилнĕ пулса тухать. Эпĕ те Христоспа пĕрлех
пăталаннă, 20 ĕнтĕ эпĕ хам пурăнмастăп, ман
чунăмри Христос пурăнать. Эпĕ халĕ ӳтлĕ-пӳллĕ
пурăнатăп пулсан, Турă Ывăлне ĕненнипе кăна
пурăнатăп: Вăл, мана юратса, Хăйне Хăй маншăн
вилĕме панă. 21 Эпĕ Турă ырăлăхне йышăнмастăп
теместĕп. Енчен те Турă умĕнче саккунпа тӳрре
тухма пулать пулсан, эппин Христос кăлăхах вилнĕ
пулать».

### Саккун тата ĕненӳ

3 Эй, айван Галати çыннисем! Сире кам илĕртсе
чăнлăхран пистерчĕ? Пăталанă Иисус Христос
çинчен сире куçăн курăнмалла пуличченех каласа
кăтартманччĕ-и вара? 2 Эпĕ сиртен çакна кăна
ыйтса пĕлесшĕн: эсир Святой Сывлăша саккуна
тытса пынăран е ĕненме ӳкĕтленĕрен илтĕр?
3 Святой Сывлăша илнинчен пуçларăр та халĕ этем
йăли-йĕркисемпе вĕçлетĕр, ĕнтĕ эсир çав териех
айван-и? 4 Эсир Христосшăн тӳссе ирттерни усăсăр
пулчĕ-шим вара? Е усăсăр кăна пулсанччĕ! 5 Сире
Турă мĕншĕн Сывлăш парать, хăватсем кăтартать?
Саккуна тытса пынăран е Унăн Хыпарне
ĕненнĕрен? 6 Авраам Турра ĕненнĕ, çакна Турă
тӳрĕлĕх шутне кĕртнĕ.
7 Ĕнтĕ пĕлсе тăрăр: ĕненекенсем – Авраам ачисем.
8 Ĕненĕве пула ытти халăхсем те тӳрре тухасси
пирки Çырнинчех каланă. Турă Авраама ун çинчен
малтанах çапла пĕлтернĕ: «Сан урлă пур халăх та
пиллĕхлĕ пулĕ». 9 Çапла ĕнтĕ ĕненекенсем Турра
чунтан парăннă Авраампа пĕрлех пиллĕх илеççĕ.
10 Саккун хушнипе пурăнакансем вара пурте
ылханлă, мĕншĕн тесен çапла çырнă: «Саккун
кĕнекинче мĕн çырнине пурне те ялан тытса
пыман кирек епле çын та ылханлă». 11 Саккунпа
кăна никам та Турă умĕнче тӳрре тухаймасси çак
сăмахсенчен уççăнах курăнать: «Тӳрĕ пурăнакан
ĕненӳпе чĕрĕлĕхлĕ пулĕ». 12 Саккун ĕненӳпе
çыхăнман, унта çапла каланă: «Саккуна пĕтĕмпех
тытса пыракан саккуна пула чĕрĕлĕхлĕ пулĕ».
13 Христос пирĕн ылхана Хăй çине йышăнса пире
саккун ылханĕнчен Хăйĕнпе тӳлесе илнĕ, мĕншĕн
тесен: «Йывăç хĕрес çине çакса асаплантарса
вĕлернĕ çын ылханлă», – тесе çырнă вĕт-ха. 14 Çакă
пĕтĕмпех ытти халăхсем те Авраама панă пиллĕхе
Иисус Христос урлă илччĕр тесе, пире те хамăра
шантарнă Сывлăша ĕненӳпе илмелле пултăр тесе
пулса иртнĕ.

### Саккун тата Турă сăмах парса шантарни

15 Тăванăмăрсем! Этем пурăнăçĕнчен тĕслĕх илсе
паратăп: çын алă пусса çирĕплетнĕ, шантарнă
халала та никам та улăштарма е хушса çырма
пултараймасть. 16 Авраампа унăн йăхне вара Турă
Хăй сăмах парса шантарнă. Асăрхăр: Вăл нумай çын
çинчен каланă пек «санăн тăхăмна» темен, пĕр çын
çинчен каланă пек «санăн тăхăмунти Пĕрне» тенĕ.
Çав Пĕри вăл Христос. 17 Мĕншĕн çапла калатăп-ха?
Мĕншĕн тесен Туррăн Христос çинчен малтанах
çирĕплетнĕ, шантарнă сăмахне тепĕр тăват çĕр
вăтăр çултан тин йĕркелесе çырнă саккун
улăштарма та, пăрахăçлама та пултараймасть.
18 Çапла вара еткерлĕхе саккунпа илни Турă
шантарнипе илни пулмасть, анчах та Авраама Турă
Хăйĕн еткерне сăмах парсах шантарнă. 19 Апла
пулсан саккун мĕн тума кирлĕ-ха? Ăна каярахпа,
çынсем усал ĕçсем тума пуçланă пирки, халăха
тытса тăмашкăн панă. Ангелсем урлă
çураçтаракана панă çав саккун Турă шантарнă
«тăхăмри Пĕри» киличчен вăйра тăнă. 20 Анчах та
çураçтаракан килĕшӳ тăвакан икĕ ен хушшинче
кăна пулма пултарать, Турă вара – пĕрре!

### Турă шантарнă еткере илекенсем

21 Эппин саккун Туррăн шантарса панă
сăмахĕсене хирĕçлет-ши? Пачах та хирĕçлемест!
Мĕншĕн тесен çынсене чĕрĕлĕх пама пултаракан
саккун панă пулсан, тӳрре тухасси чăнах та
саккунран килнĕ пулĕччĕ. 22 Анчах та Çырнинче
пурте çылăх тыткăнĕнче тенĕ. Çапла вара Турă
шантарнине Иисус Христоса ĕненнипе çеç,
ĕненекенсем çеç илееççĕ. 23 Килес ĕненĕве
йышăнма чĕремĕрсем уçăличчен, ĕненӳ вăхăчĕ
çитиччченех пире саккун сыхласа тăнă. 24 Çапла вара
ĕненнипе тӳрре тухчăр тесе саккун пире ачана
пăхнă пек пăхса Христос патне илсе çитерчĕ.
25 Ĕненӳ вăхăчĕ çитнĕренпе вара эпир ача
пăхаканăн ирĕкĕнчен тухрăмăр.
26 Мĕншĕн тесен эсир пурсăр та Христос Иисуса
ĕненнипе Турă ывăлĕсем пулса тăтăр. 27 Христоспа
пĕр пулма тĕне кĕрсе эсир Христос сăнлăхне
йышăнтăр. 28 Ĕнтĕ иудей та, урăх халăх çынни те
çук; чура та, ирĕкли те çук; арçын та, хĕрарăм та çук
– мĕншĕн тесен Христос Иисус сăнлăхĕнче эсир
пурте пĕр. 29 Енчен те эсир Христосăн пулсан, эппин
эсир Авраам тăхăмĕсем, Турă шантарнă еткере
илекенсем пулатăр.

4 Тата калам: еткер илекенĕ мĕн пур пурлăхăн
хуçи пулин те, ача чухне чураран нимĕн чухлĕ
те уйăрăлса тăмасть. 2 Ашшĕ палăртнă вăхăт
çитиччен вăл хăйне пăхса ӳстерекенсене, пурлăхне
пăхса упракансене пăхăнса тăрать. 3 Эпир те
çаплах, ача шутĕнче чухне çут çанталăк вăйĕсене
пăхăнса пурăннă. 4 Анчах та вăхăт тулса çитсен Турă
Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне янă. Ăна
хĕрарăмах çуратнă, Çав Ывăл та саккуна пăхăнса
пурăннă. 5 Пире саккун тыткăнĕнчен ирĕке
кăларттарса ывăллăха илес тесе Турă çапла тунă.
6 Эсир унăн ачисем пулнăран ĕнтĕ сирĕн чун-
чĕрĕре Турă Хăйĕн Ывăлĕн Сывлăшне янă. «Авва ,
Аттем!» – тесе çав Сывлăш Турра чĕнет. 7 Çавăнпа
ĕнтĕ эсĕ чура мар, Турă ывăлĕ. Ывăлĕ пулсассăн,
эппин эсĕ Иисус Христос урлă Унăн еткерне
илекенĕ пулатăн.

### Каялла çул çук

8 Тахçан эсир Турра пĕлменрен турă маррисене
турă тесе пуççапса пурăннă. 9 Халĕ вара, Турра
пĕлнĕ хыççăн, тата тĕрĕсрех каласан, Турă сире
пĕлнĕ хыççăн, мĕншĕн-ха эсир çут çанталăкăн
халсăр та мĕскĕн вăйĕсем патне таврăнасшăн,
мĕншĕн каллех вĕсен чури пуласшăн? 10 Эсир
темĕнле кунсемпе уйăхсене, вăхăтсемпе çулсене
уяса пурăнатăр. 11 Эпĕ сирĕншĕн шикленетĕп:
сирĕн патăрта вăй хурса тăрăшни харама ан
кайтăрччĕ.
12 Эй, тăвансем! Ман пек пулăр тесе сире
тархаслатăп. Эпĕ те сирнешкелех. Эсир мана ним
туса та кӳрентермерĕр. 13 Эпĕ сире чи малтан Ырă
Хыпар вĕрентнĕ чухне ӳт-пĕвĕм халсăр пулнине
эсир пĕлнĕ. 14 Ӳт-пĕвĕм халсăрришĕн ун чухне эсир
мана тиркеме май пур çĕртех тиркемерĕр, манран
йĕрĕнсе пăрăнмарăр. Эсир мана Турă ангелне
хапăл тунă пекех, Христос Иисуса хапăл тунă пекех
йышăнтăр. 15 Ун чухнехи телейĕр ăçта кайса кĕчĕ
халĕ? Çакна çирĕплетсех калатăп: ун чухне эсир,
кирлĕ пулсан, мана куçăрсене кăларса пама та
хатĕрччĕ! 16 Çапла вара, чăннине каланăшăн эпĕ
сирĕн тăшманăр пулса тăтăм-и? 17 Леш çыннисем
вĕсем сире ырă тăвас тесе мар, пире пĕр-пĕринчен
сивĕтсе, сире хăйсем майлă çавăрасшăн
тăрмашаççĕ. 18 Ырришĕн ман умра кăна мар,
яланах тăрăшмалла. 19 Эй, ачамсем! Христос сăнарĕ
сирĕн чунăрта пуличченех ача çуратакан хĕрарăм
тӳсекен асапа эпĕ каллех тӳсетĕп. 20 Çак самантра
сирĕнпе пĕрле пулăттăмччĕ, урăхларах
калаçăттăмччĕ, мĕншĕн тесен халĕ сирĕн пирки
ним шухăшлама та аптăратăп.

### Агарьпе Сарра çинчен ытарлă калани

21 Эй, эсир, саккун йăлипе пурăнас текенсем!
Каласамăр мана: саккун мĕне вĕрентнине пĕлетĕр-
и эсир? 22 Çырнинче çапла каланă: „Авраамăн икĕ
ывăл пулнă. Пĕри – чура хĕрарăмран, тепри –
ирĕклĕ хĕрарăмран“. 23 Анчах та чура хĕрарăмран
çурални ытти ачасем пекех ӳтрен çуралнă, ирĕклĕ
хĕрарăмран çурални вара Турă шантарса панă
сăмахран çуралнă. 24 Çакна ытарлă каланă: икĕ
хĕрарăм икĕ халала пĕлтерет. Пĕри – Синай тăвĕ
çинче панă йĕрке – Агаре пĕлтерет, унăн ачисем те
чура пулса çуралаççĕ. 25 Агарь вăл Аравири Синай
тăвне пĕлтерет тата хальхи Иерусалимпа тӳр килет,
мĕншĕн тесен Иерусалим ачи-пăчи мĕнĕпех
чуралăхра пурăнать. 26 Çӳл тӳпери Иерусалим вара
ирĕклĕ: вăл – пирĕн аннемĕр. 27 Мĕншĕн тесен
Çырнинче çапла каланă: „Эй, ача тăвайман, ача
çуратайман хĕрарăм, савăн! Ача çуратса асап
курманскер, хĕпĕртесе кăшкăр! Ма тесен арсăр
арăмăн ачи-пăчи упăшкаллă арăмăннинчен чылай
нумайрах!“ 28 Эсир те, тăвансем, Турă шантарнă
сăмахран Исаак пек çуралнăскерсем. 29 Анчах ун
чухне ӳтрен çурални Сывлăшран çуралнине епле
хĕсĕрленĕ, халĕ те çаплах. 30 Çырнинче ун пирки
мĕн каланăччĕ-ха? «Ирĕклĕ хĕрарăмăн ывăлĕпе
пĕрле еткер ан илтĕрччĕ тесен, чура хĕрарăмпа
унăн ывăлне хăваласа ямалла», – тенĕ унта.
31 Çапла ĕнтĕ, тăвансем, эпир чура хĕрарăм
ывăлĕсем мар, ирĕклĕ хĕрарăм ывăлĕсем.

### Христоса ĕненекенсем ирĕклĕ

5 Çапла вара, хамăра Христос панă ирĕклĕхе
çирĕп упраса пурăнăр, каллех чуралăх
пусмăрне кĕрсе ӳкмелле ан пултăр. 2 Акă эпĕ,
Павел, сире калатăп: ӳт кастарнипех эсир
Христосран нимĕнле усă та кураймăр. 3 Ӳтне
кастаракан кирек епле çынна та тата çакна калам:

унӑн саккуна тӗплӗн пурнӑҫласа тӑмалла. 4 Эсир,
хӑвӑра саккунпа тӳрре кӑларас текенсем,
Христоссӑр тӑрса юлтӑр, Турӑ ырӑлӑхӗсӗр тӑрса
юлтӑр. 5 Эпир вара, ӗненсе Турӑ Сывлӑшне
илнӗскерсем, хамӑра Турӑ тӳрре кӑларасса шанса
кӗтсе тӑратпӑр. 6 Мӗншӗн тесен Христос Иисусӗпе
пӗр пулсан, ӳт кастарнипе кастарманни ниме те
пӗлтермест. Чи кирли вара – юратулӑхра палӑракан
ӗненӳ.
7 Сирӗн ҫул пуҫламӑшӗ аванччӗ. Кам сире чӑнлӑх
ҫулӗ ҫинчен пӑрса илсе кайрӗ? 8 Ҫултан пӑрӑнма
сире, паллах, хӑвӑра чӗнекен Турӑ хистемен.
9 Сахал кӑвас тӗпех пӗтӗм чустана йӳҫӗтсе
хӑпартать. 10 Эсир тек шухӑшӑрсене улӑштармасса,
Хуҫамӑрпа пӗрлӗхлӗ пуласса шансах тӑратӑп. Сире
пӑтратакана вара, вӑл кирек кам пулсан та,
айӑплав пулӗ. 11 Эй, тӑвансем! Хӑш-пӗрисем эпӗ
халӗ те ӳт кастарасси ҫинчен вӗрентетӗп теҫҫӗ.
Эппин мана мӗншӗн хӗсӗрлеҫҫӗ? Эпӗ халӗ те ӳт
кастарас пирки вӗрентнӗ пулсан, хӗрес ҫинчен
вӗрентни вӗсене чӑрмантарман пулӗччӗ. 12 Сире
пӑтратакансем вара ӳтне кӑна мар, ыттине те
йӑлтах кастарччӑр ара!
13 Эй, тӑвансем! Сире ирӗклӗ пулма чӗнсе илнӗ.
Анчах та ирӗклӗх ӳт-пӗве юрамашкӑн сӑлтав ан
пултӑр! Эсир пӗр-пӗрне юратса, пӗр-пӗриншӗн
тӑрӑшса пурӑнӑр. 14 Мӗншӗн тесен пӗтӗм саккунӑн
тӗш сӑмахӗ ҫакӑ: «Ҫывӑх ҫыннуна хӑвна юратнӑ пек
юрат». 15 Енчен те эсир пӗр-пӗрне кӑшласа-ҫисе
пурӑнатӑр пулсан, асӑрханӑр: пӗр-пӗрне тӗппипех
пӗтересси патне ҫитсе тухмалла ан пултӑрччӗ!

### Чун-чӗм хушнӑ пек пурӑнӑр

16 Ҫавӑнпа та эпӗ сире калатӑп: чун-чӗм хушнӑ
пек пурӑнӑр, вара ӳт-пӳ хистени хыҫҫӑн каймӑр.
17 Мӗншӗн тесен ӳт-пӳ чун-чӗме хирӗҫлишӗн
антӑхать, чун-чӗм вара – ӳт-пӗве хирӗҫлине
кӑмӑллать. Вӗсем пӗр-пӗринпе ҫырлахайманран
эсир чылай чухне хӑвӑр мӗн тӑвас тенине
тӑваймастӑр. 18 Сире чун-чӗм ертсе пырать пулсан,
эппин саккун аллинче тӑмастӑр. 19 Ӳт-пӳ ӗҫӗсем
паллӑ ӗнтӗ. Вӗсем ҫаксем: мӑшӑра улталани,
 askӑнлӑх, ирсӗрлӗх, намӑссӑрлӑх, 20 кӗлеткесене
пуҫҫапни, тухату, вӑрҫу-хирӗҫӳ, харкашу, кӗвӗҫӳ,
кӑра ҫилӗлӗх, ятлаҫу, тавлашу, илӗртӳ, ӗненӳ
тӗлӗшӗнчен пайланса кайни, 21 курайманлӑх,
ҫынна вӗлерни, ӗҫке ерни, ӳсӗрле
хӑтланкаларӑшсем тата ҫавнашкал тем те пӗр. Эпӗ
сире малтан та асӑрхаттарнӑччӗ, халӗ татах калам:
ҫавӑн пек пурӑнакансем Турӑ Патшалӑхӗн еткерне
илеймӗҫ.
22 Чун-чӗм ҫимӗҫӗсем вара ҫаксем: юратулӑх,
савӑнӑҫ, канӑҫлӑх, чӑтӑмлӑх, тивлетлӗх,
ыркӑмӑллӑх, ӗненӳ, 23 йӑвашлӑх, чараклӑх. Ҫаксене
саккун сивлеймест. 24 Христоса ӗненекенсем хӑйсен
хӗрӳ те аскӑнчӑк туйӑмлӑ ӳт-пӗвне хӗрес ҫумне
пӑталанӑ. 25 Енчен те эпир чун-чӗмпе пурӑнатпӑр
пулсан, пирӗн чун-чӗм хушнине тӑвас пулать.
26 Атьӑр чапшӑн ҫунмасӑр, пӗр-пӗрне
тарӑхтармасӑр, пӗр-пӗрне кӗвӗҫмесӗр пурӑнар.

### Ҫын мӗн акӗ, ҫавна вырса илӗ

6 Эй, тӑвансем! Пӗр-пӗр ҫын мӗнле те пулин
ҫылӑха кӗрсен, эсир, чун-чӗмпе пурӑнакансем,
ӑна лӑпкӑ кӑмӑлпа тӳрлетӗр. Ҫав хушӑрах хамӑн та
ҫылӑха кӗрес марччӗ тесе харпӑр-хӑй асӑрханса
пурӑнтӑр. 2 Пӗр-пӗрин йывӑрлӑхӗсене ҫурмалла
пайлӑр, ҫапла туни Христос саккунне пурнӑҫлани
пулать те ӗнтӗ. 3 Мӗншӗн тесен ним тӗшне тӑман
ҫын, хӑйне тем вырӑннех хурса, хӑйне ҫеҫ улталать.
4 Кашниех хӑйӗн ӗҫне тимлӗ тутӑр, вара вӑл ҫын
мухтавне ӑмсанмӗ, хӑйшӗн хӑй мухтавлӑ пулӗ.
5 Кашнин хӑйӗн ҫӗклемӗ. 6 Турӑ сӑмахне вӗренекен
хӑйӗн мӗн пур туприне вӗрентекенӗпе пайлатӑр.
7 Ан улталанӑр: Турра хур тума ҫук! Ҫын мӗн акӗ,
ҫавна вырса илӗ. 8 Мӗншӗн тесен ӳт-пӗвӗшӗн
акакан ӳт-пӳренех вилӗм вырса илӗ. Чун-чӗмшӗн
акакан вара чун-чӗмрен ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ вырса
илӗ. 9 Ырӑ туса ывӑнар мар, вӑй-хал пӗтмесен
уншӑн эпир вӑхӑт ҫитсен мӗн акнинех вырса
илӗпӗр. 10 Ҫапла вара, ҫӗр ҫинче пурӑнас кунсенче
пурне те ырӑ тӑвӑр. Уйрӑммӑнах ӗненекен
тӑванӑмӑрсене ырӑ тӑвар.

### Юлашкинчен асӑрхаттарса тата ырӑ сунса калани

11 Малалла хам аллӑмпа ҫыратӑп. Курӑр-ха, сас
паллисем епле пысӑк. 12 Ҫын умӗнче мухтавлӑ
пулас текенсем сире ӳт кастарма хистеҫҫӗ, хӑйсем
вара Христос хӗресӗшӗн пире ан хӗсӗрлеччӗр ҫеҫ
тесе шухӑшлаҫҫӗ. 13 Ӳт кастарнисем хӑйсем те
саккуна пӑхӑнса пурӑнмаҫҫӗ; сире те, хӑйсене
мухтанса ҫӳреме сӑлтав пултӑр тесе ҫеҫ, ӳт
кастарасшӑн. 14 Ман мухтанассӑм килмест.
Мухтансан та эпӗ Иисус Христос Хуҫамӑр хӗресӗпе
кӑна мухтанӑп. Ҫав хӗрес ҫинче ку тӗнчене маншӑн
пӑталанӑ, мана та тӗнчешӗн пӑталанӑ. 15 Мӗншӗн
тесен Иисус Христоспа пӗрлӗхлӗ пулас тесессӗн ӳт
каснипе касманни ниме те пӗлтермест,
пӗлтерӗшли – ҫӗнӗ ҫын пуласси. 16 Ҫак йӗркепе
пурӑнакансене, Турӑ суйланӑ Израиль
ӗненекенӗсене канӑҫлӑхпа ырӑлӑх пултӑр!
17 Ӗнтӗ мана никам та тек чӑрмав ан кӳтӗр,
мӗншӗн тесен Иисус Хуҫамӑр суранӗн йӗрӗсем
манӑн ӳт-тирӗм ҫинче те юлнӑ. 18 Эй, тӑвансем!
Иисус Христос Хуҫамӑр тивлечӗ сирӗн чун-чӗмре
пултӑр. Аминь.

# Ефессем патне

### Саламлани

1 Турӑ ирӗкӗпе Иисус Христосӑн апостолӗ пулма
тивӗҫнӗ Павелран – Христос Иисуса чунтан
парӑннӑ Ефесри ӗненекенсене. 2 Сире Атте
Туррӑмӑрпа Иисус Христос Хуҫамӑртан ырӑлӑхпа
канӑҫлӑх пултӑр.

### Турра мухтани

3 Иисус Христос Хуҫамӑрӑн Турри, Унӑн Ашшӗ,
мухтавлӑ пултӑр. Вӑл пире, Иисус Христоспа
пӗрлӗхлисене, чун-чӗмӗн тӗрлӗ пилӗпе ҫӳлти
сӑвапа пилленӗ. 4 Вӑл пире, Христоспа
пӗрлӗхлисене, сӑваплӑ та таса, юратуллӑ
пурӑнччӑр тесе, тӗнчене пултаричченех суйласа
илнӗ. 5 Хӑйӗн чаплӑ ырӑлӑхне мухтамалла пултӑр
тесе, Турӑ пире Хӑйӗн ырӑ ирӗкӗпе Иисус Христос
урлӑ ывӑллӑха илмешкӗн чӑн малтанах палӑртса
хунӑ, Хӑйӗн савнӑ Ывӑлӗ урлӑ пире ырӑлӑх панӑ.
7 Ывӑлӗ пире Хӑйӗн Юнӗпе тӳлесе илни, Унӑн
ырӑлӑхӗ тулли пулни пирӗн ҫылӑхсене каҫармалла
турӗ. 8 Ҫав ырӑлӑха Вӑл пире ытлашшипех панӑ ҫеҫ
мар, унпа пӗрле тӗрлӗрен ӑслӑлӑх та, ӑнланулӑх та
панӑ. 9 Хӑйӗн ырӑ ирӗкне Ывӑлӗ урлӑ пурнӑҫлама
Вӑл чӑн малтанах палӑртса хунӑ, ҫапла майпа пире
Хӑйӗн шухӑшӗн вӑрттӑнлӑхне уҫса панӑ. 10 Ҫакна
Вӑл вӑхӑт тулса ҫитсессӗн, ҫӳл тӳперипе ҫӗр
ҫинчине пӗрлештерсе, Христоса пуҫ пултарас тесе
тунӑ. 11 Пирӗн, Христоса маларах ӗненнисен, Турра
чапа кӑларма тӑрӑшмалла. Христоспа пӗрлӗхлӗ
пулса эпир Турӑ еткерне илессе пӗтӗмпех Хӑй
ирӗкӗпе Тӑвакан малтанах палӑртса хунӑ. 13 Чӑнлӑх
сӑмахне – ҫӑлӑнӑҫӑн Ырӑ Хыпарне – илтсессӗн, Ӑна
ӗненсе, эсир те Христоспа пӗрлӗхлӗ пултӑр. Сире,
Христоса пула, хӑвӑра пама пулнӑ Святой Сывлӑш
пичечӗпе палӑртнӑ. 14 Пирӗн Турра мухтава
кӑларма тӑрӑшмалла. Турӑ пире ҫылӑх
тыткӑнӗнчен тӳлесе илӗ. Эпир Хӑйӗн еткерне
тивӗҫессе унччен вара пире Святой Сывлӑш
шантарать.

### Павел кӗлтуни

15 Ҫавӑнпа эпӗ те, эсир Христос Иисуса ӗненни
ҫинчен, ӗненекенсене пурне те юратни ҫинчен
илтрӗм те, 16 хамӑн кӗллӗмре сире аса илсе,
сирӗншӗн Турра тӑтӑшах тав тӑватӑп. 17 Иисус
Христос Хуҫамӑрӑн Турри, мухтав Ашшӗ, Хӑйне
пӗлмешкӗн сире ӑслӑлӑх паракан тата вӑрттӑнлӑх
уҫакан Сывлӑш патӑрччӗ тетӗп. 18 Хӑй сире чӗнсе
илсе шанчӑк панине, Унӑн ӗненекенсене парас
еткерӗ епле пысӑк та чаплӑ пулнине сире
пӗлтермешкӗн чӗрӗрсене уҫтӑрччӗ тетӗп. 19 Пирӗн,
Унӑн аслӑ вӑйне пула Ӑна ӗненекенсен, хамӑр
ӑшӑмӑрти Унӑн виҫесӗр вӑй-хӑватне пӗлмелле
пултӑрччӗ тетӗп. 20 Турӑ ҫав аслӑ вӑй-хӑвата
Христос урлӑ палӑртрӗ: Ӑна вилӗмрен чӗртсе
тӑратса, ҫӳл тӳпере Хӑйӗн сылтӑм енне лартрӗ.
21 Вӑл Христоса пур тӗрлӗ патшасенчен,
пуҫлӑхсенчен, вӑйлисемпе хуҫасенчен – кунти
пурӑнӑҫра кӑна мар, лери пурӑнӑҫра та – ҫӗрпе
пӗлӗт ҫинчи мӗн пур влаҫран та аслӑрах турӗ. 22 Вӑл
Христоса пуринчен те асли – Чиркӳ Пуҫӗ – туса,
пурне те Унӑн ури айне туса, Ӑна пӑхӑнмалла турӗ.
23 Чиркӳ – Христос Ӳт-пӗвӗ, пурне те Тултараканӑн
туллилӗхӗ пулса тӑрать.

### Вилӗмрен – чӗрӗлӗхе

2 Турӑ йӗркине пӑснӑран тата ҫылӑхлӑ пулнӑран
эсир те вилӗччӗ. 2 Ҫак тӗнче йӑлипе, усал
сывлӑшсемпе хуҫаланакан пуҫлӑх ирӗкӗпе эсир
тахҫан ҫылӑхлӑ пурӑннӑ. Ҫав пуҫлӑх Турра
хирӗҫҫисемпе халӗ те хуҫаланать-ха. 3 Тахҫан эпир
хамӑр та ҫавнашкалахчӗ: ӳт-пӳ хистенӗ хыҫҫӑн, ӳт-
пӳпе шухӑш-кӑмӑл илӗртнӗ хыҫҫӑн каяттӑмӑр.
Эпир те, этем йӑхӗнчисем, ыттисем пекех, Турӑ
ҫилли ҫитес ҫынсем пулнӑ. 4 Анчах та иксӗлми
ырӑлӑхлӑ Турӑ пире, ҫылӑха кӗнӗрен
вилнӗскерсене, Хӑйӗн пысӑкран та пысӑк
юратулӑхӗпе юратса, Христоспа пӗрле чӗртрӗ. Унӑн
ырӑлӑхӗпе эсир ҫӑлӑнӑҫ тупрӑр. 6 Вӑл сире,
Христоспа пӗрле чӗртсе, ҫӳл тӳпере Христос
Иисуспа пӗрле лартнӑ. 7 Ҫакна Вӑл пире пулас
ӗмӗрте Христос Иисус урлӑ Хӑйӗн юратулӑхӗнче
палӑракан иксӗлми ырӑлӑхне кӑтартас тесе тунӑ.
8 Мӗншӗн тесен эсир Унӑн ырӑлӑхӗпе ӗненсе
ҫӑлӑнӑҫ тупрӑр. Ку вара сирӗн тивӗҫӗр мар, Турӑ
парни. 9 Ҫӑлӑнӑҫа ӗҫе кура памаҫҫӗ, ҫавӑнпа никам
та ӗҫӗсемпе мухтаннӑ ан пултӑр. 10 Мӗншӗн тесен
пире Турӑ ҫапла пултарнӑ: Христос Иисуспа
пӗрлӗхлӗ туса, пире Хӑй палӑртнӑ ырӑ ӗҫӗсене
пурнӑҫламашкӑн хатӗрленӗ.

### Христоспа пӗрлӗхлӗ пулни

11 Ӗнтӗ ҫакна ан манӑр: ҫуралнӑ тӑрӑх, эсир тахҫан
урӑх халӑх ҫыннисем шутланнӑ. Сире „ӳт кастарнӑ“
текеннисем „ӳт кастарманнисем“ тетчӗҫ. Ӳт

кастарасси вара – этем аллипе тунӑ ӗҫ кӑна. 12 Ун
чухне эсир Христоссӑр пулнӑ, Израиль халӑхӗнчен
те, Турӑ шантарса панӑ халалран та аякра тӑнӑ; ҫак
тӗнчере шанчӑксӑр, Турӑсӑр пурӑннӑ. 13 Халӗ вара
эсир, тахҫан Турӑран аякра пулнисем, Христос
Иисуспа пӗрлӗхлӗ, Унӑн Юнӗ урлӑ эсир Турӑ патне
ҫывхартӑр. 14 Мӗншӗн тесен Христос урӑх
халӑхсемпе иудейсене ҫураҫтарнӑ, пӗр халӑх туса
пӗрлештернӗ, вӗсене уйӑрса тӑракан чӑрмава
аркатнӑ. 15 Хӑйӗнпе пӗрлӗхлӗ пултарса иккӗшӗнчен
пӗр ҫӗнелнӗ этем тӑвас тесе, килӗшӳ кӳрес тесе
курайманлӑха Хӑйӗн вилӗмӗпе пӗтернӗ, саккун
хушнине Хӑйӗн вӗрентӗвӗпе пӑрахӑҫланӑ. 16 Вӑл
Хӑйӗн хӗрес ҫинчи асапӗпе курайманлӑха пӗтерсе,
иккӗшӗнчен пӗр туса, вӗсене Турӑпа ҫураҫтарас
тенӗ. 17 Вара, килсессӗн, Вӑл сире, Турӑран
аякрисемпе ҫывӑххисене те, канӑҫлӑх кӳрекен Ырӑ
Хыпар пӗлтернӗ. 18 Христоса пула ӗнтӗ икӗ
халӑхӗшӗн те, пӗр Сывлӑш витӗмӗпе, Ашшӗ патне
каймалли ҫул уҫӑлчӗ.
19 Ҫапла вара, эсир ҫичӗ ют та мар, ютран
килнисем те мар, эсир – Турӑ халӑхӗн пӗр тан
ҫыннисемех, Турӑ ачисемех пулатӑр. 20 Эсир
апостолсемпе пророксем хывнӑ никӗс ҫинче ҫирӗп
тӑратӑр. Никӗсри тӗп чул вара – Иисус Христос Хӑй.
21 Ҫав тӗп чул ҫинче пӗтӗм ҫурт тытӑнса тӑрать. Вӑл,
тикӗс купаланса, Хуҫамӑра халалланӑ таса Чиркӳ
пулса пырать. 22 Христоспа пӗрлӗхлӗ пулса, Турӑ
Сывлӑшӗ пулӑшнипе эсир те Турӑ ҫурчӗ пулса
пыратӑр.

### Павел – ытти халӑхсен ӳкӗтлевҫи

3 Ҫавӑнпа та эпӗ, Павел, сирӗншӗн, урӑх халӑх
ҫыннисемшӗн, Иисус Христос тыткӑнӗнче
пурӑнатӑп. 2 Сире валли хатӗрленӗ Хӑйӗн ырӑлӑхне
Турӑ мана пани ҫинчен, мана Турӑ вӑрттӑнлӑхӗ
уҫӑлни ҫинчен эсир илтнӗ ӗнтӗ. Ун пирки эпӗ
маларах кӗскен ҫырнӑччӗ. 4 Эппин, ҫавна вуласа
тухсассӑн, эпӗ Христос вӑрттӑнлӑхне епле
ӑнланнине эсир пӗлме пултаратӑр. 5 Этемлӗхӗн
иртнӗ ӑрӑвӗсене ҫав вӑрттӑнлӑха пӗлме паман,
анчах та халӗ Святой Сывлӑш ҫав вӑрттӑнлӑха
Унӑн сӑваплӑ апостолӗсемпе пророкӗсене уҫса
панӑ. 6 Вӑрттӑнлӑхӗ вара ҫакӑ: Ырӑ Хыпар
пӗлтернипе ытти халӑхсем те иудейсемпе пӗрлех
еткер илме тивӗҫлӗ, вӗсем те пӗр ӳт-пӳ пайӗсемех,
вӗсем те Турӑ Иисус Христос урлӑ пама
шантарнине илес ҫынсемех. 7 Турӑ Хӑйӗн хӑвачӗпе
мана ырӑлӑхне парнеленине пула, эпӗ Ырӑ
Хыпаршӑн ӗҫлесе тӑракан пултӑм. 8 Мана,
ӗненекенсенчен пуринчен те тивӗҫсӗррине, ҫав
ырӑлӑха – Христосӑн ӑсласа илейми пуянлӑхӗ
ҫинчен ытти халӑхсене пӗлтерме – шанса панӑ.
9 Ҫӳл тӳпери пуҫлӑхсемпе влаҫсене Туррӑн тӗрлӗ
енлӗ ӑслӑлӑхӗ Чиркӳ урлӑ халӗ паллӑ пултӑр тесе,
Туррӑн вӑрттӑнлӑхне, шухӑшне манӑн пурне те
уҫса памалла. Ҫав вӑрттӑнлӑх вара Иисус Христос
урлӑ пурне те туса ҫитернӗ Турӑра мӗн ӗмӗртен
пытарӑнса упраннӑ. 11 Ӗмӗрсем пуҫланиччен хи ҫав
шухӑшне Турӑ вара Христос Иисус урлӑ, пирӗн
Хуҫамӑр урлӑ, пурнӑҫланӑ. 12 Унпа пӗрлӗхлӗ пулса,
Ӑна ӗненсе, эпир ҫирӗп кӑмӑллӑн та шанчӑклӑн
Турӑ патне ҫывхарма пултаратпӑр. 13 Ҫавӑнпа та
эпӗ сирӗншӗн хурлӑх курнӑшӑн ан кулянӑр, вӑл
асапсене эпӗ сире мухтава кӑларасшӑн тӳсетӗп.
14 Эпӗ ҫавӑнпа та Иисус Христос Хуҫамӑрӑн Ашшӗ
умне чӗркуҫленетӗп. 15 Ҫӳл тӳпери тата ҫӗр ҫинчи
кирек епле йӑх-ӑрӑва та ят паракане – Вӑл. 16 Хӑйӗн
мухтавӗн пуянлӑхне кура Вӑл сире вӑй патӑрччӗ,
Хӑйӗн Сывлӑшӗпе ӑшӑрсенчи ҫӗнелнӗ этеме
ҫирӗплетсе ӳстертӗрччӗ тесе кӗлтӑватӑп. 17 Ӗненӗве
пула сирӗн чун-чӗрӗрте Христос пурӑнтӑрччӗ
тетӗп. 18 Юратулӑх сирӗнте ҫирӗп тымар янӑран
сирӗн ытти мӗн пур ӗненекенсемпе пӗрлех
ӗненӗвӗн анлӑш-тӑршшӗне, тарӑнӑш-ҫӳллӗшне
пӗлмелле пултӑрччӗ, 19 чунӑрсене Туррӑн
туллилӗхӗпе пӗтӗмпех тултармашкӑн Христосӑн
ӑсласа илейми юратулӑхне ӑнланмалла пултӑрччӗ
тетӗп. 20 Хӑйӗн вӑй-хӑвачӗпе пирӗн ӑшӑмӑрта
хамӑр ыйтнинчен те, ӗмӗтленнинчен те ытларах
Тӑвакана мухтав пултӑр. 21 Иисус Христоспа
пӗрлӗхлӗ Чиркӳре ламран лама, ӗмӗр-ӗмӗр Турра
мухтав пултӑр. Аминь.

### Чиркӳ пӗрлӗхӗ

4 Ҫапла вара эпӗ, Хуҫамӑршӑн тӑрӑшнине пула
тӗрмере лараканскер, сире тархаслатӑп:
хӑвӑра чӗнсе илнине тивӗҫлӗ пулӑр. 2 Йӑваш та
сӑпайлӑ, чӑтӑмлӑ пулӑр, пӗр-пӗрне юратса-каҫарса
пурӑнӑр. 3 Турӑ Сывлӑшӗ панӑ пӗрлӗхе пӗр-
пӗринпе килӗштерсе упрама тӑрӑшӑр. 4 Хӑвӑра
Турӑ чӗнсе илсе пӗртен-пӗр шанчӑк панӑ пекех,
эсир пӗр ӳт-пӳпе, пӗр чун-чӗмпе пурӑнӑр. 5 Хуҫамӑр
пӗрре, ӗненӳ пӗрре, шыва кӗни те пӗрре;
6 Туррӑмӑр пӗрре, Вӑл пурин Ашшӗ те. Вӑл –
пуринчен те ҫӳлте, Хӑйӗн хӑватне пурин урлӑ та
тӑвать, Вӑл – пурин ӑшӗнче те. 7 Пире кашнинех
Христос ырӑлӑх виҫсе панӑ. 8 Ҫавӑнпа ҫапла каланӑ
та: «Ҫӳле хӑпарсан Вӑл тӑшманӗсене тыткӑна илнӗ,
этемсене вара тивӗҫлӗ парнесем панӑ». 9 „Ҫӳле
хӑпарсан“ тени вара мӗне пӗлтерет-ха? Маларах
Вӑл ҫӗр тӗпне анса курнине мар-и вара? 10 Ҫапла
ӗнтӗ, пӗрре анса, тепре ҫӳл тӳперен те ҫӳлерех
ҫӗкленсе, Вӑл ҫут тӗнчене Хӑйӗнпе тултарнӑ. 11 Вара
Вӑл хӑшӗсене апостол, хӑшӗсене пророк, хӑшӗсене
Ырӑ Хыпар пӗлтерсе ҫӳрекен, хӑшӗсене
вӗрентӳҫӗсемпе чун кӗтӳҫисем тунӑ. 12 Ҫав ҫынсене
ӗненекенсен сӑваплӑхне ӳстермешкӗн, Турӑшӑн
ӗҫлемешкӗн, Христос Ӳт-пӗвне – Чиркӗве –
тӗреклетмешкӗн уйӑрса лартнӑ. 13 Турӑ Ывӑлне
ӗненсе, пӗлме тӑрӑшса, эпир пурте пӗр пуличчен,
хамӑр та Христос пекех паха, аталанса ҫитнӗ арсем
пуличчен ҫапла пулмалла. 14 Пирӗн ӗнтӗ ҫаплах
пӗчӗк ачасем пек пулмалла мар. Вӗсене кирек епле
вӗрентӳ ҫилӗ те, иккӗлентерсе, ҫавӑрттарса ярать;
улталама вӗренсе ҫитнӗ чее ҫынсем хыҫҫӑн вӗсем

часах каяççӗ. 15 Пирӗн вара чăнлăха пӗлтерсе,
юратса чун-чӗрепе Ун патнелле ӳссе çӗкленмелле;
Христос вăл – Пуç. 16 Пӗтӗм Ӳт-пӗвӗн – Чиркӗвӗн –
тӗрлӗ пайӗсем пӗр-пӗринпе çыхăнса тăраççӗ, пӗтӗм
Ӳт-пӳ пӗрлӗхлӗ, Ӳт-пӗвӗн кашни пайӗ кирлӗ пек
ӗçлет. Пуçа пула вара пӗтӗм Ӳт-пӳ юратулăхра ӳссе,
хăйне хăй аталанса пырать.

### Кивӗ пурăнăçран çӗнӗ пурăнăç патне

17 Çавăнпа та эпӗ сире Хуçа Турă ячӗпе
тархаслатăп: малашне тӗлсӗр те пушă ăс-пуçлă
ытти халăхсем пек ан хăтланăр. 18 Вӗсен ăс-тăнӗ
çуталман-ха. Турра пӗлменрен, хытă чун-чӗреллӗ
пулнăран вӗсем Турăран ютшăнса пурăнаççӗ.
19 Вӗсем, намăс-симӗсе çухатса, нихăçан
тăранмасла тем тӗрлӗ ирсӗрленсе, аскăнлăха
ярăннă. 20 Эсир вара апла мар: Христоса ӗненсессӗн
епле пурăнмаллине пӗлетӗр. 21 Мӗншӗн тесен эсир
Ун çинчен илтнӗ, Ăна ӗненсе чăнлăха пӗлнӗ
(чăнлăх вара – Иисусра). 22 Çав чăнлăха пула
ултавлă аскăн кăмăл хыççăн кайса çӗрӗшсе пӗтекен
кивӗ çыннăн пурăнăç йӗркине пăрахăçламаллине,
23 ăс-тăнпа чун-чӗме çӗнетмеллине эсир пӗлетӗр.
24 Турă евӗрлӗ пултарнă, чăнлăха пула тӳрӗ те
сăваплă пурăнакан çӗнӗ этем сăнлăхне
йышăнмаллине те пӗлетӗр.

### Çӗнӗ пурăнăç йӗрки

25 Сирӗнтен кашниех, суялăха пăрахăçласа,
хăвăра çывăх çынна чăннине калатăр, мӗншӗн
тесен эпир пӗр ӳт-пӳ пайӗсем. 26 Çилленсен те
çылăха ан кӗрӗр: хӗвел аниччен çиллӗр иртсе
кайтăр. 27 Шуйттана хăвăра улталама ан парăр.
28 Кам вăрласа пурăннă, малашне ан вăрлатăр. Ху
валли ху ӗçлесе ил, вăл çитмен пурăнăçпа
пурăнакана та пулăшма çиттӗр. 29 Чӗлхе-çăварăртан
пӗр юрăхсăр сăмах та ан тухтăр, ӗненме ӳкӗтлекен
ырă сăмах кăна тухтăр. Çав сăмах итлекене ырăлăх
кӳтӗр. 30 Туррăн Святой Сывлăшне ан хурлăр,
çылăхран тӳлесе илес кун валли сире Святой
Сывлăш пичечӗпе паллă тунă. 31 Кирек епле
тарăхупа хаярлăх та, çилленӳ те, кăшкăрашу та,
киревсӗр сăмах та, ытти усаллăх та сиртен аякра
тăтăр. 32 Пӗр-пӗринпе ырă пулăр, пӗр-пӗрне
хӗрхенӗр, Христос урлă Турă сире каçарнă пек, эсир
те пӗр-пӗрне каçарăр.
5 Çапла вара, юратакан ачисем пек пулса, Турă
евӗр пулма тăрăшăр, 2 пӗр-пӗрне юратса
пурăнăр. Христос та, пире юратса, пирӗншӗн Хăйне
Хăй парнелӗхе, Турра юрăхлă ырă парнелӗхе кӳнӗ.
3 Турра ӗненекенсен хăйсене тивӗçлӗ
тыткаламалла, çавăнпа сирӗн хушшăрта
аскăнлăхпа тӗрлӗ ирсӗрлӗх, çăткăнлăх пирки
калаçу та ан пултăр. 4 Тата усал сăмах калани, пуш
сăмах калаçни, вырăнсăр шӳтлени сире килӗшмест,
тав сăмахӗ кăна килӗшӳллӗ. 5 Ӗнтӗ çакна пӗлсе
тăрăр: нимӗнле аскăнчăк та, ирсӗр çын та, мулшăн
çунакан та Христоспа Турă Патшалăхӗн еткерне
илеес çук. Унашкалли кӗлеткесене пуççапаканпа
пӗрех.

### Çутă ачисем пек пурăнасси

6 Хăвăра пуш сăмахпа илӗртсе улталама ан парăр.
Унашкаллисене, Турра хирӗççисене, Турă çилли
çитет. 7 Çавăнпа та вӗсемпе пӗр каварлă ан пулăр.
8 Эсир те тахçан тӗттӗмлӗхре пурăннă. Халӗ вара,
Хуçамăрпа пӗр пулса, çутăлăха тухрăр. Эппин çутă
ачисем пек пурăнăр. 9 Мӗншӗн тесен Святой
Сывлăшăн çимӗçӗсем çаксем: ырăлăх, тӳрӗлӗх тата
чăнлăх. 10 Турра мӗн юрăхлине пӗлмешкӗн
тăрăшăр. 11 Тӗттӗмлӗхӗн усăсăр ӗçӗсене ан
хутшăнăр, хутшăнма мар – питлӗр. 12 Мӗншӗн тесен
тӗттӗмлӗх ачисен вăрттăн ӗçӗсем çинчен калама та
намăс. 13 Çапах та çутта пула мӗн питлени палăрать.
Çутăра палăрни вара йăлтах курăнса тăрать.
14 Çавăнпа та каланă ӗнтӗ: «Эй, чунна çывратса
янăскер, вăран та вилӗмрен чӗрӗлсе тăр, вара сана
Христос çути çутатӗ».
15 Çавăнпа та астăвăр: хăвăра ăссăррисем пек мар,
ăслисем пек асăрханullлă тытăр. 16 Вăхăта хаклама
пӗлӗр, мӗншӗн тесен саманисем пит усал. 17 Çапла
вара, çăмăлттай шухăшлă ан пулăр, Турă ирӗкне
пӗлсе çитмешкӗн тăрăшăр. 18 Эрех ӗçсе ӳсӗрӗлсе ан
çӳрӗр, вăл путсӗре кăларать. Ун вырăнне чун-
чӗрӗре Святой Сывлăшпа тултарăр. 19 Пӗр-пӗрне
псалом, мухтав юрри, кӗлӗ юрри сăмахӗсемпе
ӳкӗтлӗр. Пӗтӗм чӗререн Хуçа Турра мухтаса юрлăр.
20 Хамăр Хуçамăр Иисус Христос ячӗпе яланах Атте
Турра пуриншӗн те тав тăвăр, 21 Турăран хăраса,
пӗр-пӗрне итлесе пурăнăр.

### Упăшкисемпе арăмӗсем

22 Эй, арăмсем! Упăшкăрсене Хуçа Турра пăхăннă
пек пăхăнăр. 23 Мӗншӗн тесен Христос – Чиркӗвӗн
Пуçӗ те, Вăлах – ӗненекенсене Çăлаканӗ те пулнă
пекех, упăшки те арăмӗн пуçӗ пулса тăрать.
24 Чиркӳ Христоса епле пăхăнать, арăмӗн те пур
енчен те упăшкине пăхăнмалла.
25 Эй, арçынсем! Арăмăрсене Христос
ӗненекенсене юратнă пек юратăр, Вăл Чиркӳшӗн
Хăйӗн пурăнăçне панă. 26 Çакна Вăл Чиркӗве
сăмахпа сăваплатса тасатмашкăн шыва кӗртес тесе,
27 мухтавлă Чиркӗвӗн – Хăйӗн çураçнă хӗрӗн –
нимӗнле çитменлӗх те ан пултăр тесе, вăл сăваплă
та таса пултăр тесе тунă. 28 Упăшкисен арăмӗсене
хăйсен ӳт-пӗвне юратнă пекех юратмалла: арăмне
юратакан хăйне те юратать. 29 Мӗншӗн тесен хăйӗн
ӳт-пӗвне юратман, курайман çын çук. Хуçамăр
Хăйӗн Чиркӗвӗшӗн тăрăшнă пекех, этем те хăйӗн
ӳт-пӗвне тутă та ăшă усрать. 30 Эпир вара – Унăн
ӳчӗпе шăм-шакӗнчен пулнă Унăн Ӳт-пӗвӗн
пайӗсем. 31 «Çавăнпа та этем хăйӗн ашшӗпе
амăшне пăрахӗ те арăмӗ çумне çыпçăнӗ; вара
иккӗшӗ пӗр ӳт-пӳ пулӗç», – тенӗ Çырнинче. 32 Çакă

питĕ пысăк вăрттăнлăх; çак сăмахсене Христоспа
Чиркӳ пирки те каланă тесшĕн эпĕ. 33 Сирĕнтен
кашниех арăмне хăйне юратнă пек юраттăр. Арăмĕ
вара хăйĕн упăшкине хисеплетĕр.

### Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем

6 Эй, ачасем! Аçăр-аннĕре Хуçа Турра юрăхлă
пек итлĕр, çакă тĕрĕс пулать. 2 Чи малтанхи
пил-хушура пама пулнине шантарса çапла каланă:
«Аçупа аннӳне хисепле; 3 вара хăвна лайăх пулĕ,
çĕр çинчи кун-çулу вăрăм килĕ». 4 Эсир те,
ашшĕсем, ачăрсене пули-пулми ан тарăхтарăр.
Вĕсене Хуçа Турă вĕрентĕвĕпе тата ӳкĕчĕпе пăхса
ӳстерĕр.

### Чурасемпе хуçисем

5 Эй, чурасем! Çĕр çинчи хуçăрсене хăраса-
чĕтресе, пĕтĕм чĕререн, Христоса пăхăннă пек
пăхăнăр. 6 Йăпăлтисем пек, куç умĕнче кăна
тăрăшкаланçи ан тăвăр; пĕтĕм чунран Турă ирĕкне
пурнăçласа, Христос чурисем пек пулăр. 7 Çыншăн
мар, Хуçа Турăшăн ĕçленĕ пек тăрăшса ĕçлĕр.
8 Çакна пĕлсе тăрăр: чура-и, ирĕклĕ çын-и –
пурпĕрех – кашни мĕн чухлĕ ырă тунă, Хуçамăр ăна
çавăн чухлĕ парĕ. 9 Эсир те, хуçасем, чурасемпе
çавнашкалах ырă пулăр, вăйпа хăратма пăрахăр.
Çакна астăвăр: вĕсен те, сирĕн те тӳпере пĕр Хуçа,
çын кам пулнине Вăл пăхмасть.

### Туррăн çар тумтирне тăхăнăр

10 Тăванăмсем! Тата эпĕ çакна каласшăн: Хуçа
Турăпа, Унăн вăй-хăвачĕпе тĕрекленĕр.
11 Шуйттанăн вăрттăн каварĕсене хирĕç тăмашкăн
Туррăн çар тумтирне тăхăнăр. 12 Мĕншĕн тесен
эпир ӳтлĕ-юнлă çынсемпе çапăçмастпăр. Эпир
тӳпери пуçлăхсене, влаçсене, çак тĕттĕмлĕх
тĕнчине тытса тăракансене, çĕрпе пĕлĕт хушшинчи
усаллăх сывлăшĕсене хирĕç тăратпăр. 13 Çавăнпа
та, хура кунсем çитсессĕн хирĕç тăмашкăн,
парăнмасăр йăлтах тӳссе ирттермешкĕн Туррăн çар
тумне-хатĕрне илĕр. 14 Эппин чăнлăх пиçиххине
çыхса, тӳрĕлĕхĕн тимĕр тумне тăхăнса, çирĕп
тăрăр. 15 Канăçлăх çинчен пĕлтермешкĕн хатĕр
пулни сирĕн урана тăхăнмалли пултăр. 16 Унтан та
ытларах, ĕненĕвĕн ум хӳттине тытăр – унпа эсир
шуйттанăн ухă йĕпписене, хĕртнĕскерсене, пурне
те сӳнтерме пултаратăр. 17 Тата çăлăнăçăн шлемне
тăхăнăр. Хăвăрпа пĕрле чун-чĕм хĕçне – Турă
Сăмахне – илĕр. 18 Тĕрлĕрен кĕлĕпе яланах Турра
кĕлтăвăр, тархаслăр. Яланах Турă Сывлăшĕпе
килĕшӳллĕн пуççапăр. Çакна çирĕп тытса пырса
мĕн пур ĕненекенсемшĕн кĕлтăвăр. 19 Маншăн та
кĕлтăвăр. Ырă Хыпар вăрттăнлăхне хăюллăн
хыпарлама çăварăма уçсассăнах, Турă ăна кирлĕ
сăмах патăрччĕ тесе кĕлтăвăр. 20 Сăнчăрласассăн
та, эпĕ – Ырă Хыпар элчи. Тивĕçĕме пурнăçласа,
манăн уççăн та хăюллăн Ырă Хыпар пĕлтересчĕ.
Çавăншăн кĕлтăвăр.

### Сывпуллашни

21 Манăн ĕç-пуç çинчен, эпĕ мĕн туни çинчен вара
сире Тихик каласа парĕ. Вăл манăн юратнă
ĕненекен тăванăм, Хуçа Туррăмăрăн шанчăклă
тарçи. 22 Эпĕ ăна сирĕн патăра хамăр çинчен каласа
пама тата сире хавхалантарма ятăм.
23 Атте Турăпа Иисус Христос Хуçамăртан канăçлăх
тата ĕненӳллĕ юратулăх пултăр сире, тăванăмсем.
24 Иисус Христос Хуçамăра ĕмĕр-ĕмĕр юратакансене
пурне те Турă ырăлăхĕ пултăр. Аминь.

# Филиппăсем патне

### Саламлани

1 Иисус Христос чурисенчен Павелпа
Тимофейран – Иисус Христоспа пĕрлĕхлĕ
Филиппăри мĕн пур ĕненекенсене тата чиркӳ
пуçлăхĕсемпе диаконсене : 2 сире Атте Туррăмăртан
тата Иисус Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăçлăх
пултăр.

### Павел филиппăсемшĕн кĕлтуни

3 Сире аса илмессерен эпĕ Туррăма тав тăватăп.
4 Пирвайхи кунран пуçласа халиччченех эсир Ырă
Хыпар сарас ĕçе хутшăнатăр. Çавăнпа та, сирĕншĕн
кĕлтунă чухне, яланах савăнса кĕлтăватăп. 6 Эпĕ
çакна çирĕп шанатăп: ырă çул çине сире Турă илсе
тухнă, çав çулпах Вăл сире Иисус Христос кунĕ
çитиччченех уттарĕ. 7 Эсир пурте чĕремре пулнăран
сирĕн çинчен урăхла шухăшлама та
пултараймастăп. Тĕрмере чухне те, Ырă Хыпара
хӳтĕлесе çирĕплетнĕ чухне те Турă мана панă
пархатара эсир пурте манпа пĕрле пайларăр. 8 Эпĕ
сире Иисус Христос юратулăхĕпе пурне те
юратнине Турă курать. 9 Сирĕн юратулăхăр
пĕлӳллĕрех, тиркевлĕрех пултăрччĕ тесе
кĕлтăватăп. 10 Ырра уйăрма пĕлнĕ пирки Христос
кунĕнче эсир таса чунлă та кăлтăксăр пулни
палăртăрччĕ тетĕп. 11 Иисус Христос урлă илнĕ
тӳрĕлĕхĕн тулăх çимĕçне пула сирĕн Турра мухтава
кăлармалла пултăрччĕ тетĕп.

### Пурăнасса та эпĕ Христосшăн пурăнатăп

12 Тăвансем! Эпĕ сире çакна каласшăн: мана
хĕсĕрлени Ырă Хыпара тата ăнăçлăрах сарма
пулăшрĕ. 13 Мана тĕрмене хупсан, эпĕ Христоса
ĕненнĕ пирки ларнине преторири хурал
салтакĕсем те, ыттисем те – пурте пĕлчĕç. 14 Мана
тĕрмене хупнă пирки Хуçамăра ĕненекен
тăвансенчен чылайăшĕ тата хытăрах ĕненме, Турă
сăмахне хăюллăрах та хастартарах ӳкĕтлесе
вĕрентме пуçларĕç. 15 Чăн та, хăшĕ-пĕрисем çакна
мана кĕвĕçсе, манпа тупăшса тăваççĕ. Теприсем
вара Христос çинчен ырă шухăш-кăмăлпах
вĕрентеççĕ. 16 Манпа ăмăртма хăтланса пĕрисем
Христос çинчен таса чунпа вĕрентмеççĕ, вĕсем
мана, тĕрмере лараканскере, хăйсем пекех
кĕвĕçӳллĕ пуль тесе, тата ытларах кулянтарасшăн.
17 Теприсем, Ырă Хыпара хӳтĕлесси манăн тивĕçĕм
пулнине пĕлнĕрен, юратуллă чунпа вĕрентеççĕ.
18 Апла-и, капла-и – Христос çинчен таса чунпа е
ячĕшĕн кăна вĕрентсен те – эпĕ çапах савăнатăп,
савăнăп та. 19 Сирĕн кĕллĕре пула, Иисус Христос
Сывлăшне пула çакă мана çăлăнма пулăшасса
пĕлсех тăратăп. 20 Çакна хытă кĕтетĕп. Эпĕ хам
намăса юлмасса, сăмахăма хăюллăн та тӳррĕн
каласса шанатăп. Çапла майпа – пурăнăçăмпа та,
вилĕмпе те – Христос ман ӳт-пĕвĕм урлă халĕ те,
яланхиллех, чаплăланĕ. 21 Пурăнасса та эпĕ
Христосшăн пурăнатăп, вилсессĕн те çӳлти сăвапа
илĕп. 22 Эпĕ çĕр çинче пурăнни ĕçĕмшĕн усăллă
пирки пурăнăçпа вилĕмрен хăшне суйласа
илмеллине те пĕлместĕп. 23 Маншăн вăл та, ку та
кăмăллă: çак пурăнăçран уйăрălса кайса манăн
Христоспа пĕрле пулас килет. Ку, паллах, чылай
аванрах пулĕччĕ. 24 Анчах та эпĕ çĕр çинче пурăнни
сире кирлĕрех. 25 Чĕрĕ юласси пирки вара эпĕ
пĕртте иккĕленместĕп. Сирĕн ĕненĕвĕре
аталантарса савăнăç кӳмешкĕн эпĕ сирĕнпе
пуринпе те курнăçăп-ха. 26 Вара, тепре сирĕн
патăра çитсессĕн, мана пула эсир Христос Иисуспа
тата ытларах мухтанма пултарăр.
27 Христосăн Ырă Хыпарне тивĕçлĕ пурăнăр кăна.
Сирĕн патăра çитсе курайăп-и, кураймăп-и – анчах
та сирĕн çинчен: вĕсем пĕр шухăшлăн пурăнаççĕ,
Ырă Хыпар ĕненĕвĕшĕн пĕр кăмăллăн кĕрешеççĕ
тенине илтеесчĕ. 28 Христоса ĕненессине хирĕç
тăракансенчен вара пĕртте ан хăрăр: эсир
хăрамасăр пурăнни вĕсемшĕн пĕтеслĕх палли пулĕ,
хăвăршăн вара – çăлăнăç палли. Çакă йăлтах
Турăран, 29 мĕншĕн тесен Христоса пула сире çапла
шăпа пӳрнĕ: сирĕн Ăна ĕненмелле кăна мар,
Уншăн асапланмалла, манашкалах кĕрешмелле.
Эпĕ Христосшăн епле кĕрешнине вара эсир курнă,
халĕ те ман пирки хыпар илсех тăратăр.

### Христос пек йăваш пулăр

2 Çапла вара, сирĕн пĕр-пĕрне Христос
вĕрентнĕ пек хавхалантарасси, юратса
лăплантарасси, пĕр-пĕринпе кăмăллăн пурăнасси,
пĕр-пĕрне хĕрхенесси, пĕр-пĕриншĕн
пăшăрханасси пур-и? 2 Эппин, пĕрешкел ĕмĕтлĕ,
пĕрешкел юратуллă, пĕрешкел шухăш-кăмăллă
пулса мана татах савăнтарăр. 3 Пĕр-пĕринпе
тупăшса, мухтава тухас тесе нимĕн те ан тăвăр.
Сăпайлă пулса пĕр-пĕрне хăвăртан ытларах
хисеплĕр. 4 Харпăр хăвăршăн кăна мар, çынсемшĕн
те тăрăшăр. 5 Сирĕн шухăш-кăмăлăр Христосăнни

пекех пулмалла. 6 Туррăн сăнарĕ пулин те, Иисус
вăйпах Турăпа тан юлас темен, 7 этем евĕрлĕ пулса,
этем евĕрлĕ курăнса, чура шăпине йышăнса Хăйне
Хăй мĕскĕнлетнĕ. 8 Вăл Хăйне вилĕм таранах –
хĕрес çинчи мăшкăлла вилĕм таранах –
йăвашлатнă, Хăйне Хăй пăхăнтарнă. 9 Çавăншăн
Турă Ăна пуринчен те çӳле çĕкленĕ, Ăна пур ятран
та аслăрах ят панă. 10 Турă çакна çӳлтисем те, çĕр
çинчисем те, çĕр айĕнчисем те – пурте – Иисус ячĕ
умĕнче чĕркусçленччĕр тесе, 11 Иисус Христос пирĕн
Атте Турра мухтава кăларакан Хуçамăр пулнине
кирек епле чĕлхе-çăвар та калатăр тесе тунă.

## Çăлтăрсем пек çутатăр

12 Çапла вара, савнă тăванăмсем, пăхăнса, Турă
сумлăхĕнчен хăраса хăвăр валли çăлăнăç хатĕрлĕр.
Эсир пăхăнса пурăнма яланах пĕлнĕ. Халĕ вара, эпĕ
сирĕнпе мар чухне, сирĕн патăрта чухнехинчен те
ытларах пăхăнăр. 13 Мĕншĕн тесессĕн Турра юрăхлă
кăмăлăрпа ĕçĕре сирĕн ăшăрта Вăл Хăй пултарать.
14 Пăсăк та аскăн ăрура кăлтăксăр, таса, Турă ачисем
пек çитменлĕхсĕр пуласчĕ тесе, мĕн тумаллине
ӳпкелешмесĕр, иккĕленмесĕр тăвăр. Çак ăру
çыннисем хушшинче тĕттĕм тĕнчери çăлтăрсем
пек çутатăр, 16 чĕрĕлĕх сăмахне упрăр. Вара,
Христосăн кунĕ çитсессĕн, тăрăшуллă ĕçĕмпе, тунă
ĕçĕм харама кайманнипе мухтанма та пултарăп.
17 Сирĕн ĕненĕвĕр – Турра кӳмелли парне. Çав
парне çине юнăма юхтарма тивсессĕн те эпĕ
хĕпĕртĕп, сирĕн савăнăçăра пайлăп. 18 Çавăншăн
эсир те хĕпĕртĕр, манăн савăнăçăма пайлăр.

## Тимофейпа Епафродит

19 Иисус Хуçамăра шанса часах сирĕн патăра
Тимофея яма шутлатăп. Вара, сирĕн ĕç-пуç çинчен
пĕлсен, чунăм лăпланĕ. 20 Сирĕншĕн пĕтĕм
чĕререн, хампа танах тăрăшакан çыннăм
Тимофейсăр пуçне урăх çук. 21 Ыттисем пурте Иисус
Христоса юрăхлишĕн мар, хăйсемшĕн тăрăшаççĕ.
22 Ырă Хыпар сарас ĕçре Тимофей мана ывăлĕ
ашшĕне пулăшнă пекех пулăшса тăчĕ. Вăл ĕçпе
тĕрĕсленнине хăвăрах пĕлетĕр. 23 Çапла вара, хама
мĕн кĕтнине пĕлсенех, эпĕ тӳрех сирĕн патăра
Тимофея ярăп. 24 Хуçа Турă пулăшнипе эпĕ хам та
сирĕн патăра часах çитсе курасса çирĕп шанатăп.
25 Апла пулин те, эпĕ сирĕн патăра ĕненекен
тăванăма, ĕçри тата кĕрешӳри юлташăма
Епафродита пыма хушасшăн. Мана кирлĕ чухне
пулăшма эсир ăна хăвăрах янăччĕ. Вăл, чăнах та,
мана пулăшрĕ. 26 Вăл сире курасшăн тунсăхласа
çитрĕ, хăй чирлени çинчен эсир илтнине пĕлсессĕн
вара хуйха ӳкрĕ. 27 Мĕншĕн тесен вăл вилмеллех
чирленĕччĕ, анчах Турă ăна хĕрхенчĕ. Турă ăна çеç
мар, мана та хĕрхенчĕ: хуйхă çине суйхă пуласран
хăтарчĕ. 28 Çавăнпа та эпĕ Епафродита сирĕн
патăра хăвăртрах ярас терĕм. Унпа курнăçса
калаçсассăн эсир хĕпĕртĕр, вара манăн чунăм та
лăпланĕ. 29 Ăна ытти ĕненекен тăвансене йышăннă
пекех савăнса хапăл тусамăрччĕ, Хуçамăр ячĕпе
сума сусамăрччĕ. 30 Христос ĕçĕшĕн вăл вилес
патнех çитнĕччĕ. Ун чухне мана пулăшма сирĕн
май килмен пирки вăл пурăнăçне шеллемесĕр
маншăн тăрăшрĕ.

## Чăн-чăн тӳрĕлĕх

3 Ытти пирки вара эпĕ сире çакна каласшăн:
Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ пулса савăнăр. Пĕр каланă
сăмахах тепре çырмашкăн мана йывăр мар, сире
вара вăл инкек-синкексенчен хăтарса хăварĕ.
2 Йытăлла çынсенчен, ĕненĕве сиен
кӳрекенсенчен, ӳт кастарассинчен асăрханăр.
3 Мĕншĕн тесен чăн-чăн ӳт кастарнисем вĕсем –
эпир. Ӳт-пĕве шанмасăр, эпир Турă Сывлăшĕ хушнă
пек Турра пуççапатпăр, Христос Иисуспа
мухтанатпăр. 4 Паллах, ӳт-пĕве шанмашкăн манăн
та сăлтавăм пур. Çав сăлтавăм ӳт-пĕве шанакан
кирек каманнинчен те ытларах. 5 Çуралсан сакăр
кунран манăнне ӳт кастарнă. Эпĕ, Вениамин
сыпăкĕнчи Израиль çынни, юн тăрăх – чăн-чăн
еврей, вĕреннĕ тăрăх – фарисей, 6 тăрăшнă тăрăх –
Турă Чиркĕвне хĕсĕрлекен, саккун тӳрĕлĕхĕ тăрăх –
тасаскер. 7 Анчах та, Христоса ĕненсен, хам
маларах паха тесе шутлани сиенлине ăнланса
илтĕм. 8 Хуçамăра, Иисус Христоса, пĕлесси
пуринчен те чаплăрах пулнăран эпĕ ыттине йăлтах
пăрахăçларăм, çӳп-çап вырăнне кăна хуратăп.
Çакна эпĕ Христоса ăша хывас тесе, 9 хама Унра
тупас тесе турăм. Эпĕ саккуна пурнăçласа хам
тăрăшнипе тӳрре тухас теместĕп. Эпĕ Христоса
ĕненсе тӳрре тухасшăн, çав тӳрĕлĕхе вара Турă
ĕненӳ урлă парать. 10 Вилĕмрен чĕрĕлсе тăрас
тĕллевĕмпе манăн Христоса тата Ăна вилĕмрен
чĕртсе тăратнă вăй-хăвата пĕлес килет; Унăн
асапне, вилĕмне Унпа пĕрле пайлас килет.

## Тĕллев патне васкаса

12 Анчах та эпĕ çитес çĕре çитрĕм теме
пултараймастăп. Христос мана мĕншĕн суйласа
илнĕ, çавăн патне тăрăшсах ăнтăлатăп. 13 Эй,
тăвансем! Эпĕ çитес çĕре çитрĕм тесе йăпанса
лармастăп; иртнине манăçа хăварса малаллах
ыткăнатăп. 14 Эпĕ тĕллевĕм патне, хама парас сăвап
патне васкатăп. Турă пире çав сăвапшăн Иисус
Христос урлă чĕнсе илнĕ. 15 Эппин, пирĕнтен хăшĕ
аталанса çитнĕ – çапла шухăшлатăр. Кам урăхла
шухăшлать – Турă унăн тĕрĕс мар шухăшне те
уçăмлатĕ. 16 Кирек епле пулсассăн та, хамăр пĕр
тупнипе килĕшӳллĕн шухăшлар, çав йĕркепе
пурăнар.
17 Эй, тăвансем! Ман евĕр пулăр. Кам пирĕн евĕр
пурăнать, çавсенчен эсир те тĕслĕх илĕр.
18 Мĕншĕн тесен нумайăшĕ (вĕсем çинчен эпĕ сире
пĕрре мар каласаттăм, халĕ куççуль витĕрех калам)
хăйсене Христос хĕресĕн тăшманĕсем пек

тыткалаççĕ. [19] Вĕсен шăпи – пĕтеслĕх, вĕсен турри –
хырăм, вĕсем намăсланмаллипе те мухтанаççĕ.
Вĕсем çĕр çинчи пирки кăна шухăшлаççĕ. [20] Пирĕн
тăван çĕр-шывăмăр вара – çӳлте, пĕлĕт çинче. Эпир
хамăра Çăлакан Иисус Христос Хуçамăр унтан
килессе кĕтетпĕр. [21] Пĕтĕм тĕнчене пăхăнтарнă
Хăйĕн вăй-хăвачĕпе усă курса Вăл пирĕн мĕскĕн ӳт-
пĕве урăхлатĕ, Хăйĕн мухтавлă Ӳт-пĕвĕ евĕрлĕ
тăвĕ.

4 Эппин, чунăм туртакан савнă тăванăмсем,
Хуçамăра çапла çирĕп ĕненсе тăрăр, эсир –
манăн савăнăçăм, манăн çĕнтерӳ пуç кăшăлĕ.

### Чĕнсе каланисем

[2] Еводияна тархаслатăп, Синтихияна тархаслатăп:
эсир Хуçамăра ĕненнĕ тăрăх тăвансем пулатăр,
çавăнпа та пĕр шухăшлă пулăр. [3] Санран вара,
ĕçĕмри шанчăклă юлташăм, çакна ыйтатăп: эсĕ
вĕсене пĕр чĕлхе тупма пулăш. Вăл хĕрарăмсем
манпа тата Климентпа пĕрле, ыттисемпе пĕрле
(вĕсен ячĕсене пурăнăç кĕнекине кĕртнĕ ĕнтĕ) Ырă
Хыпар сарас ĕçе хастар хутшăнчĕç. [4] Хуçамăрпа
пĕрлĕхлĕ пулса яланах савăнăр. Татах калатăп:
савăнăр! [5] Сирĕн йăвашлăхăра пур çын та пĕлтĕр.
Хуçамăр килесси çывăх ĕнтĕ. [6] Нимшĕн те ан
кулянăр. Енчен те сире мĕн те пулин кирлĕ пулсан
Турра тав туса кĕлтăвăр, тархаслăр, шухăш-
кăмăлăра уçса парăр. [7] Вара Туррăн этем
ăнланайми канăçлăхĕ Иисус Христосри пĕрлĕхре
сирĕн шухăш-кăмăлăра упраса хăварĕ.
[8] Эй, тăванăмсем! Юлашкинчен çакна калам:
чăнни, хисепли, тĕрĕсси, таси, юратулăхпа ырă
сăмаха тивĕçли пирки, кăмăллипе мухтавли пирки
шухăшлăр. [9] Хăвăр манран вĕреннине, йышăннине,
илтнине, курнине туса пырăр, – вара канăçлăх
Турри сирĕнпе пулĕ.

### Филиппăсене пулăшушăн тав туни

[10] Эсир маншăн каллех тăрăшнине курсан, эпĕ,
Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ пулса, питĕ савăнтăм. Эсир
маларах ман çинчен шутламан теместĕп, май
килтерейменнине пĕлетĕп. [11] Çак сăмахсене эпĕ
çитмен пурăнăçран каламастăп, мĕншĕн тесен эпĕ
мĕн пуррипе çырлахма хăнăхнă. [12] Эпĕ çити-
çитмине те, тулăххине те курнă. Тăраниччен
çиетĕп-и, выçах-и, тулăх-и, çити-çитми-и – эпĕ ĕнтĕ
темле те пурăнма вĕренсе çитрĕм. [13] Иисус Христос
мана тĕрек парса тăнине пула эпĕ тем тума та вăй
çитеретĕп. [14] Çапах та эсир мана инкекре пулăшни
лайăх.
[15] Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳреме пуçăнсанах,
Македонирен кайнă хыççăн мана сирĕнсĕр пуçне
пĕр чиркӳ те пулăшу памарĕ, йышăнмарĕ. Çакна
эсир, филиппăсем, хăвăрах аван пĕлетĕр. [16] Эпĕ
Фессалоникăра чухне те эсир пĕр-икĕ хутчен мана
пулăшу ярса патăр. [17] Эпĕ çакна калани сирĕнтен
пулăшу кĕтнине пĕлтермест. Ырă тунине кура
сирĕн тӳпери пайта ӳсессе шанса калатăп. [18] Хама
мĕн кирлине эпĕ пĕтĕмпех илтĕм, ытлашшипех те
илтĕм. Эсир Епафродитран парса янă парнесене
илсен кăмăлăм тулчĕ. Эсир парса яни – Турра
юрăхлă, ырă шăршăллă парне пек. [19] Хăйĕн мухтавĕ
нумай пулнăран Турăçăм сирĕн мĕн çитменнине
Христос Иисус урлă парсах тăрĕ. [20] Атте Туррăмăра
ĕмĕр-ĕмĕр мухтав пултăр. Аминь.

### Çыру вĕçĕнчи саламсем

[21] Иисус Христоса ĕненекенсене салам калăр.
Кунти ĕненекен тăвансем пурте манпа пĕрле сире
салам яраççĕ. [22] Сăваплă çынсем пурте, уйрăммăнах
император çуртĕнчисем, сире салам калаççĕ.
[23] Сире пурне те Иисус Христос Хуçамăрăн
ырăлăхĕ пултăр. Аминь.

# Колоссăсем патне

## Саламлани

1 Турă ирĕкĕпе Иисус Христос апостолĕ пулма
тивĕçнĕ Павелран тата Тимофей тăванăмăртан
– 2 Колоссăри сăваплă тата Иисус Христоспа
пĕрлĕхлĕ шанчăклă тăвансене. 3 Сире Атте
Туррăмăртан тата Иисус Христос Хуçамăртан
ырăлăхпа канăçлăх пултăр.

## Колоссăри ĕненекенсемшĕн Турра тав туни

Сирĕншĕн кĕлĕ тунă чухне эпир Турра, Иисус
Христос Хуçамăрăн Ашшĕне, яланах тав тăватпăр.
4 Мĕншĕн тесен эсир Христос Иисуса ĕненни
çинчен, ытти ĕненекенсене юратни çинчен эпир
илтрĕмĕр. 5 Хăвăр валли тӳпере хатĕрленине эсир
шанчăкпа кĕтетĕр. Мĕн хатĕрлени çинчен вара
эсир чи малтан чăнлăх сăмахне – хăвăр патăра
çитнĕ Ырă Хыпара – илтсессĕн пĕлтĕр. Турă
ырăлăхне чăннипех те пĕлнĕ кунран пуçласа çав
сăмах, пĕтĕм тĕнчери пекех, сирĕн патăрта та
сарăлса пырать, хăйĕн çимĕçне парать. 7 Ун çинчен
эсир ĕçĕмĕрти юратнă юлташран, сире пулăшакан
шанчăклă Христос тарçинчен Епафрасран пĕлтĕр.
8 Святой Сывлăш сире панă юратулăх çинчен вăл
пире те каласа кăтартрĕ.

## Христос аслăлăхĕ тата ĕçĕ

9 Çавăнпа та, сирĕн çинчен илтнĕ кунран
пуçласах, эпир сирĕншĕн Турра кĕлтăватпăр,
тархаслатпăр. Турă ирĕкне сирĕн мĕн пур ăспа
ăнланса, чун-чĕмпе ăнкарса тĕппипех пĕлмелле
пултăрччĕ тетпĕр. 10 Сирĕн Турра тивĕçлĕ, пур
тĕлĕшрен те Ăна юрăхлă пурăнмалла пултăрччĕ
тесе кĕлтăватпăр. Кирек епле ырă ĕçĕр те тухăçлă
пултăрччĕ, Турра пĕлесси ӳссех пытăрччĕ. 11 Хăйĕн
хăватлă мухтавĕпе Вăл сире, тĕрлĕ вăй-халпа
çирĕплетсе, пурне те тӳссе ирттермешкĕн чăтăмлăх
патăрччĕ. 12 Çутăлăхри Хăйĕн еткерне, сăваплисен
еткерне, илмешкĕн пире те пая кĕртнĕшĕн савăнса
Атте Турра тав тăвар. 13 Вăл пире, тĕттĕмлĕх
аллинчен хăтарса, Хăйĕн юратнă Ывăлĕн
Патшалăхне илсе кĕнĕ. 14 Ывăлĕ пире Хăйĕн Юнĕпе
тӳлесе илнĕ, пирĕн çылăхсене каçармалла тунă.
15 Вăл – курăнман Туррăн сăнарĕ, Вăл мĕн пур чĕрĕ
чуна пултаричченех пулнă. 16 Мĕншĕн тесен
пĕтĕмпех Ун урлă пултарнă. Пĕлĕт çинчине те, çĕр
çинчине те, курăнаканнине те, курăнманнине те:
çӳлти престолпа хăватсене, пуçлăхсемпе влаçсене –
пурне те Ун урлă тата Уншăн пултарнă. 17 Вăл
пуринчен малтанах пур, пурне те Вăл тытса тăрать.
18 Вăл – Чиркӳ ӳт-пĕвĕн пуçĕ. Вăл – пуçламăшĕ; пур
тĕлĕшĕнчен те малта пулмашкăн чĕрĕлсе
тăнисенчен пĕрремĕшĕ. 19 Мĕншĕн тесен Ашшĕ
мĕн пур туллилĕх Унра пултăр тенĕ, 20 хĕрес çинче
Вăл юхтарнă Юн урлă çĕр çинчипе тӳперине
çураçтарса, Ун урлă пурне те Хăйĕнпе килĕштерес
тенĕ.
21 Тахçан эсир те шухăш-кăмăлпа Турăран
ютшăнса, Унăн тăшманĕсем пулса пурăнаттăрччĕ;
ĕçĕрсем те сирĕн усалччĕ. 22 Халĕ вара, Христос Ӳт-
пĕвĕ урлă, Унăн вилĕмĕ урлă Турă сире Хăйĕнпе
çураçтарнă. Çакна Вăл сире Хăйĕн умне сăваплă та
таса, айăпсăр тăратасчĕ тесе тунă. 23 Турă умне
çапла тăрас тесен сирĕн, паллах, çирĕп те
иккĕленӳсĕр ĕненмелле, Ырă Хыпар паракан
шанчăка çухатмалла мар. Эсир Ырă Хыпара илтнĕ,
ăна çĕр çинче пурăнакансене пурне те пĕлтернĕ.
Эпĕ те, Павел, Ырă Хыпар тарçи пулса тăтăм.

## Чиркӳшĕн ĕçлесе тăни

24 Халĕ эпĕ сирĕншĕн асап курнăран савăнатăп
кăна. Христос Чиркӳшĕн – Хăйĕн Ӳт-пĕвĕшĕн – асап
курнă. Асап виçине тултарас тесе, эпĕ Христос
асапĕ çумне хамăн ӳт-пĕвĕм асапне хушатăп. 25 Турă
шухăшне пурнăçламашкăн – хама сирĕншĕн шанса
панă Турă сăмахне пĕлтерсе çитермешкĕн – эпĕ
Чиркӳшĕн ĕçлекен çын пулса тăтăм. 26 Турă шухăшĕ
ĕмĕртен ĕмĕре, ăруран ăрăва вăрттăнлăх пулса
упраннă, халĕ вара Ăна ĕненекенсемшĕн вăл
уçăлнă. 27 Турă Хăйĕн çыннисене çав вăрттăнлăх
ытти халăхсемшĕн мĕн тери чаплă пуянлăх
пулнине уçса пама кăмăл тунă. Вăрттăнлăхĕ вара –
мухтавне шантаракан хăвăр ăшăрти Христос.
28 Эпир Христос çинчен пĕлтеретпĕр, кашни çынна
тĕрлĕ ăс парса ăнлантаратпăр, ӳкĕтлетпĕр. Çакна
эпир кирек епле çынна та Христоса ĕнентерсе Турă
умне пĕр кăлтăксăр тăратас тесе тăватпăр.
29 Çавăншăн эпĕ Унăн хăвачĕпе ĕçлетĕп те,
кĕрешетĕп те, Унăн хăвачĕ манра вăйлăн тапса
тăрать.

2 Сирĕншĕн тата Лаодикири, Иерапольти
тăвансемшĕн, тата мана курман-пĕлмен мĕн
пур ĕненекенсемшĕн хам епле паттăррăн
кĕрешнине манăн сире пĕлтерес килет. 2 Вĕсен
чĕрисем чи паха ăнланулăхпа пуянланма тата Атте
Турăпа Христос вăрттăнлăхне пĕлме юратулăхпа

пĕрлешчĕр тесе, эпĕ вĕсене хастарлатма
тăрăшатăп. [3] Мĕншĕн тесен ăслăлăхпа пĕлĕвĕн мĕн
пур пуянлăхĕ – Христосра. [4] Çакна эпĕ сире суя
сăмаха чăн туса вĕрентекенсем пĕри те ан
улталайччăр тесе калатăп. [5] Кĕлеткемпе сирĕнпе
мар пулин те, чунăмпа эпĕ сирĕнпех: эсир пĕр-
пĕринпе килĕштерсе пурăннишĕн, Христоса çирĕп
ĕненнишĕн питĕ хĕпĕртетĕп.

### Христоспа пĕрлĕхлĕ çĕнĕ пурăнăç туллилĕхĕ

[6] Çавăнпа та, эсир Христос Иисус Хуçамăра
ĕнентĕр пулсан, малалла та Унпа пĕрлĕхлĕн
пурăнăр. [7] Тымар ярса Унпа тĕрекленĕр, хăвăра
вĕрентнĕ ĕненӳпе çирĕпленĕр, Турра тав тусах
тăрăр.
[8] Эй, тăвансем! Философиленсе, улталаса пустуй
япаласем çинчен вĕрентекенсенчен асăрханăр.
Вĕсем Христос хыççăн мар, этем юмах-халапĕсемпе
шухăш варкăшĕсем хыççăн каяççĕ. [9] Тĕрĕссипе вара
Унра, ӳтленсе килнĕскерте, Туррăн пĕтĕм туллилĕхĕ
пур. [10] Унпа пĕрлĕхлĕ пулнăран кăна эсир те
пурăнăç туллилĕхне илтĕр. Вăл – çӳлти пуçлăхсемпе
влаççен пуçĕ. [11] Унпа пĕрлĕхлĕ пулнине эсир ӳт
кастарса палăртнă, анчах та сирĕн ӳтĕре этем
аллипе касман. Сире Христос ӳт каснăран эсир
çылăхлă ӳт-пӳ хăвăрпа хуçаланнинчен хăтăлтăр.
[12] Эсир тĕне кĕрсе Христоспа пĕрлех вилнĕ, Ăна
вилĕмрен чĕртсе тăратнă Турă хăватне ĕненсе
Христоспа пĕрлех чĕрĕлнĕ. [13] Çылăхăрсене пула, ӳт
кастарманнине пула эсир те вилĕччĕ. Анчах та
Турă, сирĕн çылăхсене каçарса, сире те Унпа пĕрле
чĕртнĕ. [14] Эпир те, ӳт кастарнисем, саккун тăрăх
парăмлăччĕ. Çав парăм хучĕ тăрăх пирĕн мĕн-мĕн
тумаллине чĕрсе пăрахса, хутне хĕрес çине çапса,
Христос Хăйĕн асапĕпе пирĕн парăма пĕтернĕ.
[15] Çапла Вăл тĕттĕмлĕх пуçлăхĕсемпе влаçĕсен
вăйне Хăйĕн хăвачĕпе пĕтерсе чаплăн çĕнтернĕ,
вĕсенчен тĕнче кулли тунă.
[16] Эппин сире ĕçме-çимене тиркеменшĕн е
иудейсен уявне, çĕнĕ уйăхне, шăмат кунне тытса
пыманшăн никам та ан ӳпкелештĕр. [17] Мĕншĕн
тесен çаксем йăлтах – килмеллин мĕлки çеç пулнă,
килмелли – Христос – халĕ Хăй кунта. [18] Эсир çĕнсе
илнĕ парнене хăйсене хăйсем мĕскĕн пек кăтартса,
ангелсене пуççапса киленекен, хăйсем курманнине
тĕпчекен çынсем туртса ан илейччĕр. Хăйсен ăсĕпе
сăлтавсăрах мухтанма юратаççĕ пулин те, ăсĕ вĕсен
– çĕр çинчиллех. [19] Вĕсем пуçа пăхăнмаççĕ. Пуç
йĕркелесе пынипе вара, шăмă сыпписемпе тата
шăнăрсемпе пĕтĕçсе, пĕтĕм ӳт-пӳ Турă палăртнă
пек аталанать. [20] Çапла вара, эсир Христоспа пĕрле
вилнĕ, этемĕн шухăш варкăшĕсенчен хăпнă.
Мĕншĕн-ха эппин, çак тĕнче çыннисем пек, авалхи
йĕркесене пăхăнатăр? [21] «Ăна ан сĕртĕн», «куна ан
çи», «çавна ан тĕкĕн», – тенине итлетĕр? [22] Çав
чарнă ĕçме-çиме вăл хырăмра çĕрмелли япала
кăна-çке! Эппин, йăли-йĕрки те, вĕрентĕвĕ те – этем
шухăшласа кăларнăскерсем анчах. [23] Вăл
вĕрентӳсем çиелтен кăна ăслăн курăнаççĕ.
Тĕрĕссипе, хăй ирĕкне Турă ирĕкĕ тени те, хăйне
мĕскĕн пек кăтартса, ӳт-пĕвне хавшатса йăпанни те
çылăхлă кăмăл хыççăн кайниех.

3 Çапла вара, Христоспа пĕрле вилĕмрен
чĕрĕлтĕр пулсан, тӳпенелле ăнтăлăр. Унта,
Туррăн сылтăм енче, Христос ларать. [2] Çĕр çинчи
пирки мар, çӳлти çинчен шухăшлăр. [3] Мĕншĕн
тесен çĕр çинчи çылăхлă пурăнăçшăн эсир вилĕ,
сирĕн пулас пурăнăçăр Турăпа юнашар ларакан
Христоспа пĕрле упранать. [4] Сирĕн пурăнăçăр –
Христос. Вăл тепре килсессĕн эсир те Унпа пĕрле
мухтавлă пулăр.
[5] Эппин çĕр çинчи кăмăл-туйăмсене: аскăнлăха,
ирсĕрлĕхе, путсĕр кăмăл туртăмне, киревсĕр
ĕмĕтсене, çăткăнлăха – пăрахăр. Çăткăнлăх вăл
кĕлеткесене пуççапнипе пĕрех. [6] Çавăн пек кăмăл-
туйăмлисене, Турра хирĕççисене, Турă çилли çитет.
[7] Тахçан, вĕсемпе пĕрле пурăннă чухне, эсир хăвăр
та çавнашкал кăмăл-туйăм хыççăн каятăрччĕ. [8] Халĕ
çавсене йăлтах: тарăхăва, çилле, хаярлăха –
пăрахăр. Сирĕн чĕлхе-çăвартан хурласа калаçни,
усал сăмах ан тухтăр. [9] Пĕр-пĕрне ан суйăр, мĕншĕн
тесен эсир кивĕ çынна унăн мĕн пур ĕçĕ-пуçĕпех
хăвăр çинчен кивĕ тумтир пек хывса пăрахрăр,
[10] çĕннине тăхăнтăр. Турра пĕлес тесе эсир çĕнелсе,
хăвăра Пултаракан евĕрлĕ пулса пыратăр,
[11] çавăнпа грек та, иудей та, ӳт кастарни те, ӳт
кастарманни те, варвар та, скиф та, чура та, ирĕкли
те çук. Христос кăна пур; Вăл – пĕтĕмпех, Вăл –
пуринче те.
[12] Çапла вара, эсир Турă суйласа илнисем
пулсассăн, Унăн сăваплă та юратнă çыннисем
пулсассăн, çĕнĕ тумтир тăхăнăр. Çĕнни тени çакă
пултăр: хĕрхенӳ, ырăлăх, лăпкăлăх, йăвашлăх,
тӳсĕмлĕх. [13] Пĕр-пĕринпе кăмăллă пулăр, пĕр-пĕрин
хушшинче кӳренмелли тупăнсан, каçарăр. Христос
сире каçарнă, эсир те çапла тăвăр. [14] Çак çĕнĕ тум
çинчен юратулăх пиçиххине çыхăр. Мĕншĕн тесен
пĕтĕмпех çыхăнтарса тăраканни, пĕр кăлтăксăр
тăваканни – юратулăх. [15] Сире пĕр ӳт-пӳ пулса
канăçлă пурăнма чĕнсе илнĕ. Чĕрĕрсенче Турă
канăçлăхĕ хуçалантăр, кăмăлăрсем пархатарлă
пулччăр. [16] Христос сăмахĕ сирĕн ăшăрта туллин
тăтăр. Пĕр-пĕрне псалом, мухтав юрри, кĕлĕ юрри
сăмахĕсемпе ăслăн ӳкĕтлĕр. Пĕтĕм чĕререн Хуçа
Турра тав туса юрлăр. [17] Эсир кирек мĕн тусан та,
кирек мĕн каласан та – пĕтĕмпех Иисус Христос
Хуçамăр ячĕпе тăвăр, Ун урлă Атте Турра тав тăвăр.

### Пĕрлехи çĕнĕ пурăнăçри тивĕçсем

[18] Эй, арăмсем! Упăшкăрсене пăхăнăр, çакă сирĕн
Хуçа Турă умĕнчи тивĕçĕр. [19] Эсир те, упăшкисем,
арăмăрсене юратăр, вĕсемпе кăра ан пулăр.
[20] Эй, ачасем! Аçăр-аннĕре пур тĕлĕшĕнчен те
итлĕр, çакă Хуçа Турра юрăхлă. [21] Эй, ашшĕсем!
Ачăрсен ĕмĕтне татас мар тесен, вĕсене пули-
пулми ан тарăхтарăр.

22 Эй, чурасем! Çĕр çинчи хуçăрсене пур
тĕлĕшĕнчен те пăхăнăр. Йăпăлтисем пек вĕсене куç
умĕнче юрас тесе кăна мар, Турăран хăраса, пĕтĕм
чĕререн тăрăшăр. 23 Хăвăр мĕн тунине йăлтах
çыншăн мар, Хуçа Турăшăн тунă пек пĕтĕм чун-
чĕререн тăвăр. 24 Турă сире Хăйĕн еткерне парасса
эсир пĕлетĕр, мĕншĕн тесен Христос Хуçамăршăн
тăрăшатăр. 25 Кам та кам усал тăвать, ăна хăйне те
усалпа тавăрса парĕç, мĕншĕн тесен Турăшăн пур
çын та пĕрех.
4 Эй, хуçасем! Чурăрсемпе тĕрĕс те тӳрĕ пулăр.
Çакна астусах тăрăр: сирĕн те тӳпере Хуçăр пур.

### Чĕнсе каланисем

2 Турра ялан кĕлтăвăр; тимлесе, тав туса кĕлтăвăр.
3 Пирĕншĕн те кĕлтăвăр: Турă пире Христосăн
вăрттăн чăнлăхĕ çинчен Хăйĕн сăмахне
вĕрентмешкĕн çул уçса патăрччĕ. Христос çинчен
вĕрентнĕшĕн эпĕ тĕрмере ларатăп та. 4 Ӳкĕт
сăмахĕсене манăн кирлĕ пек вĕрентмелле
пултăрччĕ тесе кĕлтăвăр. 5 Ĕненменнисемпе
хутшăнни сая ан кайтăр тесен, хăвăра ăслă-тăнлă
тыткалăр. 6 Кашнинех кирлĕ пек хурав памашкăн
сăмахăр яланах кăмăллă та вырăнлă пултăр.

### Çыру вĕçĕнчи саламсем

7 Ман çинчен сире ĕненӳри юратнă тăванăмăр,
Хуçамăрăн шанчăклă тарçи, ĕçри юлташăм Тихик
каласа парĕ. 8 Эсир мĕнле пурăннине пĕлме, сире
хавхалантарма эпĕ ăна сирĕн пата ятăм. 9 Унпа
пĕрле тата Турра чунтан парăннă, ĕненӳри юратнă
тăванăмăра Онисима ятăм. Вăл сирĕн хушшăртан
тухнăскерех. Вĕсем сире кунти ĕç-пуç çинчен
каласа кăтартĕç.
10 Манпа пĕрле тĕрмере ларакан Аристарх тата
Варнавăн иккĕмĕш сыпăкри тăванĕ Марк сире
салам яраççĕ. (Хăвăр патăра пырсассăн Марка
хапăлласа йышăнăр тесе сире хушнăччĕ ĕнтĕ.)
11 Тата сире Иуст текен Иисус та салам калать.
Иудейсенчен çавсем кăна Турă Патшалăхĕшĕн
манпа пĕрле ĕçлесе тăчĕç, маншăн чун уççи пулчĕç.
12 Сире тата Иисус Христос чури, хăвăр хушшăртан
тухнă Епафрас саламлать. Сирĕн пĕр кăлтăксăр
ĕненсе çирĕп тăмалла пултăрччĕ, Турра юрăхлине
пĕтĕмпех туса пурăнмалла пултăрччĕ тесе вăл
тăтăшах хĕрӳллĕн кĕлтăвать. 13 Вăл сирĕншĕн тата
Лаодикипе Иерапольти ĕненекенсемшĕн питĕ
тăрăшнине эпĕ çирĕплетсех калама пултаратăп.
14 Пирĕн савнă тухтăр Лука тата Димас сире салам
яраççĕ. 15 Лаодикири ĕненекен тăвансене, Нимфана
тата ун килĕнче пуçтарăнакан ĕненекен
ушкăнрисене пирĕнтен салам калăр.
16 Çак çырăва хăвăр вуласа тухсассăн ăна
Лаодикири ĕненекен ушкăнрисене вулаттарăр.
Хăвăр вара эпир Лаодикине çырса янине илсе
вулăр. 17 Архипа çакна калăр: «Асту, Хуçа Турă сана
Хăйшĕн ĕçлесе тăма суйласа илнĕ, çав ĕçе лайăх
ту».
18 Çак салам сăмахĕсене эпĕ, Павел, хам аллăмпах
çыратăп. Эпĕ тĕрмере ларнине асра тытăр. Сире
пурне те Турă ырăлăхĕ пултăр. Аминь.

# Фессалоникисем патне 1-мĕш

### Саламлани

1 Павелпа Силуанран тата Тимофейран – Атте
Туррăмăрпа тата Иисус Христос Хуçамăрпа
пĕрлĕхлĕ Фессалоникăри чиркĕве. Сире пурне те
Атте Турăпа Иисус Христос Хуçамăрăн ырăлăхĕпе
канăçлăхĕ пултăр.

### Фессалоникăсен ĕненĕвĕ тата вĕсен тĕслĕхĕ

2 Хамăр кĕлĕсенче сире аса илсе эпир яланах
сирĕншĕн пуриншĕн те Турра тав тăватпăр.
3 Ĕненӳпе юратулăхран килекен ĕçĕре, Иисус
Христос Хуçамăр панă шанчăкран килекен
чăтăмлăхăра Туррăмăр тата Аттемĕр умĕнче яланах
асра тытатпăр. 4 Эй, Турă савнă тăвансем! Сире Вăл
суйласа илнине эпир пĕлетпĕр. 5 Мĕншĕн тесен
эпир пĕлтернĕ Ырă Хыпара эсир сăмах халлĕн кăна
илтмерĕр. Ырă Хыпарăн чăнлăхне эпир сире
Святой Сывлăш хăвачĕпе, çирĕп ĕненӳпе
вĕрентрĕмĕр. Сирĕн патăрта чухне эпир сире ырра
пултăр тесе мĕнле пурăннине хăвăрах пĕлетĕр.
6 Ĕненӳшĕн хĕн-хур тӳсме лексен те, эсир пирĕн
сăмаха Святой Сывлăш паракан савăнăçпа
йышăнтăр. Çапла майпа эсир те пирĕн евĕрлĕ,
Хуçамăр евĕрлĕ пулса тăтăр. 7 Эсир Македонипе
Ахаия тăрăхĕнчи мĕн пур ĕненекенсемшĕн тĕслĕх
пулса тăтăр. 8 Мĕншĕн тесен Хуçамăрăн сăмахĕ
сирĕн патран Македонипе Ахаияра кăна мар, пур
çĕре те сарăлчĕ. Эсир Турра епле ĕненнине пур
çĕрте те пĕлнĕрен пирĕн хушса каламалли нимех
те çук. 9 Пирĕн çинчен, пире эсир епле хапăл туни
çинчен çынсем хăйсемех пур çĕрте те кала-кала
кăтартаççĕ. Чĕрĕ те чăн Турра чунтан парăнас тесе,
Хăй вилĕмрен чĕртсе тăратнă Ывăлне, пире çитес
çилĕрен хăтаракана, Иисуса, тӳперен килессе кĕтес
тесе, эсир кĕлеткесене пуççапма пăрахни пирки те
калаçаççĕ.

### Павел Фессалоникăра

2 Эй, тăвансем! Эпир сирĕн патăра пыни усăсăр
пулманнине хăвăрах пĕлетĕр. 2 Маларах
Филиппăра пире асап тата хур кăтартнине эсир
пĕлетĕр. Апла пулин те, Туррăн Ырă Хыпарне эпир,
пĕтĕм вăя хурса, Турă пулăшнипе сире хăюллăнах
ӳкĕтлесе вĕрентрĕмĕр. 3 Мĕншĕн тесен пирĕн
сăмахра йăнăш та, таса мар кăмăл-шухăш та, ултав
та çук. 4 Пачах урăхла, Турă пире Ырă Хыпар
вĕрентме епле шанса панă, çапла вĕрентетпĕр те.
Эпир çынсене юрама тăрăшмастпăр, хамăр
чĕресене тĕрĕслекен Турра юрама тăрăшатпăр.
5 Турă курать: эпир сирĕн умăрта нихăçан та
йăпăлтатса калаçман, пирĕн пуяс-тăвас шухăш
пулманнине те хăвăрах пĕлетĕр. 6 Пире этем
мухтавĕ кирлĕ мар: эсир мухтани те, ыттисем
мухтани те. 7 Паллах, Христос апостолĕсем пулнă
май, эпир хамăра сирĕн патăрта мăнна хума
пултараттăмăр. Анчах та кăкăр çитерекен хăй
ачипе епле йăваш, эпир те çапла пултăмăр. 8 Эсир
пирĕншĕн хаклă çынсем пулса тăтăр, çавăнпа та,
сирĕншĕн тăрăшса, эпир сире Туррăн Ырă Хыпарне
пĕлтерме кăна мар, чунăмăрсене пама та хатĕрччĕ.
9 Эй, тăвансем! Эпир сирĕн патăрта Туррăн Ырă
Хыпарне ӳкĕтлесе вĕрентнĕ чухне епле пурăннине
астăватăр пулĕ. Сире чăрмав кӳрес мар тесе эпир
кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕмĕр, хамăра хамăр йӳнеçтерсе
пурăнтăмăр. 10 Эпир сирĕнпе, ĕненекенсемпе,
пĕрле пулнă чухне хамăра епле сăваплă, тӳрĕ,
тиркеме те çук тыткаланине эсир хăвăр та, Турă та
çирĕплетме пултарать. 11 Хăвăрах пĕлетĕр: эпир
сире пурсăра та ашшĕ ачисене ӳкĕтленĕ пекех
Турра юрăхлă пурăнма тархасласа ӳкĕтлерĕмĕр,
йăлăнтăмăр. Турă сире Хăйĕн Патшалăхне кĕме,
Хăйĕн мухтавне тивĕçлĕ пулма чĕнсе илнĕ.
13 Эсир пирĕнтен Турă сăмахне илтсессĕн, ăна
этем сăмахĕ тесе мар, Турă сăмахĕ тесе йышăнтăр.
Çавăншăн эпир тăтăшах Турра тав тăватпăр. Вăл,
чăнах та, Турă сăмахĕ. Çав сăмах сирĕн чĕрере –
ĕненекенсен чĕринче – хăйĕн ĕçне тăвать.
14 Иудейăра Христос Иисуса ĕненекенсене
иудейсемех хĕсĕрленĕ. Вĕсем евĕрлех сирĕн те,
Турра ĕненекенсен, хăвăр халăх çыннисемех
хĕсĕрленине тӳсме тивнĕ. 15 Иудейсем Иисус
Хуçамăрпа Унăн пророкĕсене вĕлернĕ. Пире те
вĕсем хăваласа кăларса ячĕç. Вĕсем Турăшăн та
юрăхсăр, пĕтĕм халăха та хирĕçлеççĕ. 16 Пире
иудейсем ытти халăхсене çăлăнăç Хыпарне
пĕлтерме чăрмантарнă пирки вĕсем хăйсен çылăх
виçине тăтăшах тултарса тăраççĕ. Вĕсене Турă
çилли çитетех.

### Ĕненекен ушкăна Павел тепре çитсе курма ĕмĕтленни

17 Эпир вара, тăвансемĕр, сирĕнтен кĕске
вăхăтлăха уйăрăлтăмăр. Анчах та куçа-куçăн курса
калаçаймастпăр пулин те, эсир асран каймарăр,
сире тата ытларах курас килекен пулчĕ. 18 Çавăнпа

та эпӗ, Павел, ыттисемпе пӗрле сирӗн патӑра пӗр-
икӗ хутчен те пыма пуҫтарӑннӑччӗ, анчах та
шуйттан чӑрмантарчӗ. 19 Иисус Христос Хуҫамӑр
тепре килсессӗн Унӑн умӗнче кам пирӗн шанчӑк
та, савӑнӑҫ та, мухтав пуҫ кӑшӑлӗ те пулӗ? Ытти
ӗненекенсемпе пӗрлех эсир те мар-и вара? 20 Эсир
пирӗн чап-савӑнӑҫ вӗт-ха!
3 Ҫавӑнпа та, уйӑрӑлӑва текех чӑтаймасӑр,
Афинӑрах юлас терӗмӗр. 2 Тимофей
тӑванӑмӑра вара, Христосӑн Ырӑ Хыпарне пӗлтерсе
Турӑшӑн вӑй хуракан ӗҫри юлташӑмӑра, сире
хавхалантарса ӗненӗвӗре ҫирӗплетме ятӑмӑр. 3 Ҫак
хӗсӗрленӗ тапхӑрта сирӗнтен пӗри те ӗненӳ пирки
ан иккӗлентӗр терӗмӗр. Вӑл асапа пире тӳсме
пӳрнине хӑвӑрах пӗлетӗр. 4 Астӑватӑр-и, хамӑра
кӗтекен асапсем пирки эпир сире хӑвӑр патӑрта
чухне малтанах асӑрхаттарнӑччӗ. Калани чӑна
килнине халӗ хӑвӑрах куратӑр. 5 Шуйттан сире
илӗртсе улталасран, хамӑр тӑрӑшса ӗҫлени харама
каясран эпӗ шиклентӗм. Ҫавӑнпа та, ырана
хӑвармасӑр, сирӗн ӗненӗвӗр мӗнешкел ҫирӗппине
пӗлмешкӗн Тимофея ятӑм.
6 Халӗ ӗнтӗ Тимофей сирӗн патӑртан лайӑх
хыпарпа таврӑнчӗ. Сирӗн ӗненесси те, юратасси
те иксӗлмен иккен. Эсир пире ырӑпа кӑна асӑнни
ҫинчен те, эпир сире курасшӑн пулнӑ пекех эсир те
пире курасшӑн иккенне те Тимофей каласа
кӑтартрӗ. 7 Вара эпир хамӑра хӗсӗрленине, йывӑр
килнине пӑхмасӑрах, сирӗншӗн, тӑвансем,
савӑнтӑмӑр; сирӗн ӗненӗвӗре курса лӑплантӑмӑр.
8 Эсир Хуҫа Турра ҫирӗп ӗненнине пӗлсессӗн пирӗн
чун хавалӗ ҫӗкленчӗ. 9 Сирӗншӗн тата пире
Туррӑмӑр умӗнче эсир кӳнӗ савӑнӑҫшӑн Турра тав
туса та ҫитереес ҫук. 10 Сирӗнпе курнӑҫасчӗ тесе,
ӗненӳре мӗн ҫитменнине ҫитересчӗ тесе, кунӗн-
ҫӗрӗн тӑрӑшса кӗлтӑватпӑр.
11 Атте Туррӑмӑр тата Иисус Христос Хуҫамӑр
пирӗн ҫул-йӗре сирӗн пата ҫавӑртӑрах. 12 Эпир сире
юратнӑ пекех, Хуҫа Турӑ сире пӗр-пӗрне те,
ыттисене пурне те юратнӑҫемӗн юратмалла
тутӑрччӗ. 13 Ҫав юратулӑхпа Вӑл сире, Иисус
Христос Хуҫамӑр Хӑйӗн сӑваплӑ ҫыннисемпе
пуринпе те тепре киличчен, ҫирӗплӗх патӑрччӗ;
сирӗн Атте Турӑ умне таса сӑваплӑхпа тӑмалла
пултӑрччӗ. Аминь.

### Турра юрӑхлӑ пурӑнӑҫ

4 Тӑвансем! Юлашкинчен эпир сире Христос
Иисус ячӗпе ҫакӑн пирки тархаслатпӑр. Эпир
сире Турра юрӑхлӑ епле пурӑнмаллине
вӗрентсеччӗ, ҫавна сирӗн тата лайӑхрах тытса
пымалла пултӑрччӗ. 2 Эсир хӑвӑра Иисус Христос
Хуҫамӑр ячӗпе эпир мӗнле пил-хушусем панине
пӗлсе тӑратӑр. 3 Сире сӑваплатакан Турӑ ирӗкӗ сире
аскӑнлӑхран пӑрӑнма хушать. 4 Чӑн Турра пӗлмен
халӑхсем пек, ҫылӑхлӑ кӑмӑл хыҫҫӑн ан кайӑр,
сирӗнтен кашниех тӳрӗ те чыслӑ пултӑр.
6 Сирӗнтен пӗри те, тӗрӗс мар ҫулпа кайса, хӑйшӗн
кӑна тӑрӑшса, тӑванне ан улталатӑр. Ҫакнашкал
хӑтланса пурӑнакансене Хуҫа Турӑ тавӑрать. Эпир
сире ун пирки малтанах ҫирӗплетсе каланӑччӗ.
7 Турӑ пире ирсӗр пулмашкӑн мар, сӑваплӑ
пулмашкӑн чӗнсе илнӗ. 8 Турӑ пире Хӑйӗн Святой
Сывлӑшне панӑ. Эппин ҫак вӗрентӗве хирӗҫлекен
вӑл этеме мар, Турра хирӗҫлет.
9 Ӗненекен тӑвансене юратасси ҫинчен ҫырма
кирлех мар пуль, мӗншӗн тесен Турӑ сире пӗр-
пӗрне юратма вӗрентнине хӑвӑрах пӗлетӗр. 10 Эсир
пӗтӗм Македони тӑрӑхӗнчи ӗненекенсемпе ҫапла
хутшӑнса пурӑнатӑр та. Эпир вара сире пӗр-пӗрне
тата ытларах юратса пурӑнма тархаслатпӑр.
11 Ӗненменнисем хӑвӑра хисеплеччӗр тесен,
ҫителӗклӗ пурӑнас тесен, эсир лӑпкӑн, хӑвӑр
ӗҫӗрпе пурӑнӑр. Эпир сире хушнӑ пек, хӑвӑра мӗн
кирлине хӑвӑр ӗҫлесе илӗр.

### Хуҫамӑр килесси

13 Тӑвансем! Сирӗн ыттисем пек, шанчӑк ҫуккисем
пек кулянмалла ан пултӑрччӗ тесе, эпӗ сире
вилнисем ҫинчен те пӗлтермесӗр хӑварасшӑн мар.
14 Мӗншӗн тесен эпир Иисус вилсе чӗрӗлнине
ӗненетпӗр пулсан, Иисуса ӗненсе вилнисене те
Турӑ Унпа пӗрле Хӑй патне илсе пырасса шанатпӑр.
15 Ҫакна эпир сире Хуҫамӑрӑн сӑмахӗпе
килӗшӳллӗн калатпӑр: эпир, чӗррисем, тата
Хуҫамӑр тепре киличчен пурӑнас ҫынсем,
вилнисенчен малта пулмӑпӑр. 16 Мӗншӗн тесен
Турӑ хушнипе архангел сасси тата Турӑ трубин
сасси илтӗнсе кайсассӑн тӳперен Хуҫамӑр Хӑй анӗ.
Вара Христоса ӗненсе вилнисем маларах чӗрӗлсе
тӑрӗҫ. 17 Унтан пире, чӗррисене, Хуҫамӑрпа тӳпере
тӗл пулмашкӑн вӗсемпе пӗрле пӗлӗт ҫине илӗҫ.
Ҫапла эпир яланлӑхах Хуҫамӑрпа пулӑпӑр. 18 Ӗнтӗ
ҫак сӑмахсене каласа пӗр-пӗрне хавхалантарӑр.
5 Эй, тӑвансем! Юлашки вӑхӑтсем ҫинчен,
самант хӑҫан ҫитесси ҫинчен ҫырмашкӑн
кирлех те мар пулӗ тетӗп. 2 Хуҫамӑрӑн кунӗ каҫхи
вӑрӑ пек кӗтмен ҫӗртен килессе эсир хӑвӑрах аван
пӗлетӗр. 3 Ҫынсем «лӑпкӑ та хӑрушсӑр» тенӗ чухне
кӗтмен ҫӗртен аркану килет, вӑл ача ҫуратас асап
пек килет. Унран никам та тарса хӑтӑлаймӗ. 4 Анчах
та эсир, тӑвансем, тӗттӗмлӗхре мар. Ҫав юлашки
кун сирӗншӗн вӑрӑ пек кӗтмен ҫӗртен килсе тухмӗ.
5 Мӗншӗн тесен эсир пурте – ҫутӑ ачисем, кун ҫути
ачисем. Эпир каҫ ачисем те, тӗттӗмлӗх ачисем те
мар. 6 Эппин ыттисем пек ҫывӑрса выртар мар,
сыхӑ та ӑслӑ-тӑнлӑ пулар. 7 Мӗншӗн тесен, сыхлӑха
ҫухатса, ҫывӑракан ҫӗрле ҫывӑрать, ӗҫсе
ӳсӗрӗлекен те ҫӗрле ӗҫет. 8 Эпир вара, кун ҫути
ачисем пулнӑ май, ӗненӳпе юратулӑхӑн тимӗр
тумне тата ҫӑлӑнас шанчӑкӑн шлемне тӑхӑнар,
хамӑр ӑс-тӑна ҫухатар мар. 9 Турӑ пире Хӑйӗн
ҫиллине кӑтартма мар, Иисус Христос Хуҫамӑр урлӑ
ҫӑлӑнӑҫ пама палӑртса хунӑ. 10 Пире пурӑннӑ чухне
те, вилсессӗн те Хӑйӗнпе пултарас тесе, Христос
пирӗншӗн пурӑнӑҫне панӑ. 11 Ҫапла вара, халӗ эсир

пĕр-пĕрне мĕнле ӳкĕтлесе, ăс парса пурăнатăр, малашне те çаплах пулăр.

## Çыру вĕçĕнче ӳкĕтленисем, саламсем

12 Эй, тăвансем! Эпир сире хăвăр хушшăрта
ĕçлекенсене – Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ пултармашкăн
ертсе пыракансене тата вĕрентекенсене – сума
сума ыйтатпăр. 13 Вĕсене ĕçĕсемшĕн юратăр,
пысăка хурса хисеплĕр. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе
пурăнăр. 14 Тăвансем! Сире тархасласах калатпăр:
наянсене ĕçлеме ӳкĕте кĕртĕр, хавшак чунлисене
хавхалантарăр, вăйсăррисемшĕн тĕрек пулăр.
Пуринпе те чăтăмлă пулăр. 15 Асăрхăр, усала хирĕç
усалпа никам та ан тавăртăр. Пĕр-пĕрне те,
ыттисене те – яланах ырă тума тăрăшăр. 16 Яланах
савăклă пулăр. 17 Тăтăшах кĕлтăвăр. 18 Пуриншĕн те
тав тăвăр, сире, Христоса ĕненекенсене, Турă çапла
хушать. 19 Турă Сывлăшне сӳнме ан парăр.
20 Пророкла каланисене ним вырăнне те хуманни
ан пултăр. 21 Ку аван-и, аван мар-и тесе шухăшлăр
та, аванни хыççăн кайăр. 22 Тĕрлĕ усалтан аякра
тăрăр.
23 Канăçлăх Турри Хăй сире туллин сăвапласа
тасаттăр. Иисус Христос Хуçамăр тепре киличчен
сирĕнте йăлтах: чун-чĕм те, чун та, ӳт-пӳ те – тĕрĕс-
тĕкел упранса юлтăр. 24 Çакна хăвăра Чĕнекен тăвĕ,
Вăл Хăйĕн сăмахне тытать.
25 Тăвансемĕр! Пирĕншĕн кĕлтăвăр. 26 Ĕненекен
мĕн пур тăванăмăрсене сăваплăн, тăванла чуптуса
саламлăр. 27 Хуçа Турра асăнса тархаслатăп: çак
çырăва мĕн пур ĕненекен тăвансене вуласа парăр.
28 Сире Иисус Христос Хуçамăрăн ырăлăхĕ пултăр.
Аминь.

# Фессалоникисем патне 2-мӗш

### Саламлани

1 Павелпа Силуанран тата Тимофейран – Атте
Туррӑмӑрпа тата Иисус Христос Хуҫамӑрпа
пӗрлӗхлӗ Фессалоникӑри чиркӗве. 2 Сире пурне те
Атте Туррӑмӑрпа Иисус Христос Хуҫамӑрӑн
ырӑлӑхӗпе канӑҫлӑхӗ пултӑр.

### Христос тепре килсен пулас суд

3 Сирӗншӗн, тӑвансемӗр, пирӗн яланах Турра тав
тумалла. Ҫапла туни тӗрӗс пулӗччӗ, мӗншӗн тесен
сирӗн ӗненӗвӗр ҫирӗпленсех пырать, сирӗн
хушшӑрта пӗр-пӗрне юратасси те вӑйлансах
пырать. 4 Ҫавӑнпа эпир Туррӑн чиркӗвӗсенче
сирӗнпе мухтанатпӑр: эсир хӗсӗрлевпе хӗн-хура
чӑтӑмлӑн та ӗненӳллӗн тӳссе ирттернӗшӗн сирӗнпе
мухтанатпӑр. 5 Эсир хӗн-хур тӳсни Туррӑн тӳрӗ сучӗ
пулассине пӗлтерет; эсир хӑвӑра тивӗҫес Турӑ
Патшалӑхӗшӗн тӳсетӗр. 6 Мӗншӗн тесен Турӑ
тӗрӗслӗхлӗ: сире хӗн-хур кӑтартакансене хуйхӑ-
суйхӑ тавӑрса парӗ, 7 сире вара, хӗн-хур
тӳсекенсене, Иисус Хуҫамӑр Хӑйӗн хӑватлӑ
ангелӗсемпе тӳперен килнӗ чухне Турӑ пирӗнпе
танах канӑҫлӑх парӗ. 8 Ун чухне Турра пӗлес
теменнисене, Иисус Христос Хуҫамӑрӑн Ырӑ
Хыпарне пӑхӑнас теменнисене вутланакан ҫулӑмра
тавӑру пулӗ. 9 Вӗсене Христос Хуҫамӑртан тата Унӑн
хӑватлӑ мухтавӗнчен яланлӑхах уйӑрса ӗмӗрлӗх
вилӗмпе айӑпланмалла тӑвӗҫ. 10 Ҫав юлашки кун
Вӑл килӗ те мӗн пур ӗненекенӗсем Хӑйне савӑнса-
тӗлӗнсе мухтанине курӗ. Эпир пӗлтернӗ Ырӑ
Хыпара ӗненнӗрен эсир те мухтакансем хушшинче
пулӑр. 11 Ҫавӑнпа та эпир яланах сирӗншӗн
кӗлтӑватпӑр: Туррӑмӑр сире мӗншӗн суйласа илнӗ,
ҫавна тивӗҫлӗ тутӑрччӗ; ырӑ тума та, ӗненӗве ӗҫпе
ҫирӗплетме те вӑй патӑрччӗ тетпӗр. 12 Ҫапла
майпа, эсир тӑрӑшнине пула, Иисус Христос
Хуҫамӑр ячӗ мухтавлӑ пулӗ. Туррӑмӑрӑн тата Иисус
Христос Хуҫамӑрӑн ырӑлӑхӗпе вара эсир те Ун урлӑ
мухтава тухӑр.

### Турра хирӗҫ ҫын

2 Тӑвансем! Иисус Христос Хуҫамӑр килесси
пирки тата хамӑр Ӑна кӗтсе илесси пирки вара
ҫакна йӑлӑнсах ыйтатпӑр: 2 иккӗленме ан васкӑр.
Христос килес кун ҫитрӗ те ӗнтӗ тесе пророкла
калани те, сас-хура та, пирӗн ятпа тесе ҫырнӑ ҫыру
та сире пӑтраштарса ан ятӑр. 3 Никам та нимӗнле
майпа та сире улталама ан пултарайтӑр. Мӗншӗн
тесен ҫав юлашки кун ҫитиччен маларах Турра
хирӗҫ пысӑк пӑлхав пулмалла, ҫылӑх ҫынни –
пӗтеслӗх ывӑлӗ – килмелле. 4 Ҫавскер мӗн пуррине
йӑлтах хирӗҫлӗ. «Турӑ», «сӑваплӑх» тетпӗр эпир.
Вӑл вара хӑйне вӗсенчен те ҫӳле хурӗ. Турӑ Ҫуртне
вӑл Турӑ пек кӗрсе ларӗ те хӑйне Турӑ тесе пӗлтерӗ.
5 Ҫапла пуласса эпӗ сирӗн патӑрта чухнех сире
каласаттӑм. Астумастӑр-и? 6 Хӑйӗн вӑхӑчӗ ҫитиччен
Турра хирӗҫ ҫав ҫын мӗншӗн палӑрманнине эсир
халӗ пӗлетӗр. 7 Усалӑн ӗҫӗсем вӑрттӑн пуҫланнӑ та
ӗнтӗ, анчах халӗ ӑна чарса тӑраканӗ пур. Ҫав чарса
тӑракана сириччен нимех те пулмалла мар-ха.
8 Чарса тӑраканнине сирсессӗн вара Турра хирӗҫ
ҫын килӗ. Анчах та Иисус Хуҫамӑр ӑна Хӑйӗн
ҫӑварӗнчи сывлӑшӗпех ҫапса антарӗ, Хӑй иккӗмӗш
хут килнипе пӗтерӗ. 9 Турра хирӗҫ ҫын килесси
шуйттан тӑрӑшнипе пулӗ. Килессе вӑл шуйттанла
вӑйпа, суя паллӑсемпе хӑватсем кӑтартса,
10 тӗрлӗрен суя-ултавпа килӗ. Хӑйсене ҫӑлӑнӑҫ
кӳрекен чӑнлӑха юратман пирки пӗтес ҫул ҫине
тӑнисене вӑл хӑй майлӑ ҫавӑрӗ. 11 Ҫавӑнпа Турӑ
вӗсене ултав аллине парӗ, вӗсем ӗнтӗ суялӑха
ӗненӗҫ. 12 Чӑнлӑха ӗненес вырӑнне суялӑха
юратакансене пурне те суд кунӗнче айӑплав пултӑр
тесе Турӑ ҫапла тӑвӗ.

### Сире ҫӑлса хӑвармашкӑн суйласа илнӗ

13 Хуҫа Турӑ савакан тӑванӑмӑрсем! Пирӗн
сирӗншӗн Турра тӑтӑшах тав тумалла. Мӗншӗн
тесен Турӑ сире Святой Сывлӑшпа сӑваплатса,
чӑнлӑха ӗнентерсе ҫӑлса хӑвармашкӑн чӑн
малтанах суйласа илнӗ. 14 Иисус Христос Хуҫамӑрӑн
мухтавӗ сире те тивӗҫтӗр тесе, эпир вӗрентекен
Ырӑ Хыпар урлӑ ҫӑлса хӑварма Турӑ сире чӗнсе
илнӗ. 15 Эппин, тӑванӑмӑрсем, тӗреклӗ тӑрӑр. Эпир
сире сӑмах вӗҫҫӗн е ҫыру урлӑ панӑ вӗрентӗве
ҫирӗп тытса пырӑр. 16 Хӑйӗн ырӑлӑхне пула пире
савса ӗмӗрлӗх хавхалану тата ырӑ шанчӑк панӑ
Иисус Христос Хуҫамӑрпа Атте Туррӑмӑр 17 сирӗн
чун-чӗрӗре лӑплантартӑр, калас ырӑ сӑмахпа тӑвас
ырӑ ӗҫ валли ҫирӗплӗх патӑр.

### Пирӗншӗн кӗлтӑвӑр

3 Ҫапла ӗнтӗ, тӑвансемӗр, пирӗншӗн кӗлтӑвӑр.
Хуҫамӑрӑн сӑмахӗ сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса
пытӑрччӗ, хӑвӑр патӑрти пекех мухтавлӑ
пултӑрччӗ. 2 Тата Турӑ пире пӑсӑк та усал

çынсенчен хăтартăрччĕ тесе кĕлтăвăр, мĕншĕн
тесен ĕненӳ пурин те çук-ха. [3] Анчах та Хуçамăр
шанчăклă. Вăл сире çирĕплĕх парса усалтан упраса
хăваратех. [4] Эсир Хуçамăрпа пĕрлĕхлĕ пулнăран
эпир сире мĕн хушнине пурнăçланине, малашне те
пурнăçласса шанатпăр. [5] Хуçамăр сире Хăйĕн
юратулăхĕ патне, Христос чăтăмлăхĕ патне çул
кăтарттăр.

### Наянлăхран асăрхаттарни

[6] Эй, тăвансем! Иисус Христос Хуçамăр ячĕпе эпир
сире хистесех çакна калатпăр: наянланса
пурăнакан тăванăрсенчен пăрăнса çӳрĕр. Вĕсем
эпир вĕрентнĕ пек пурăнмаççĕ. [7] Пирнешкел
пурăнмаллине эсир хăвăрах пĕлетĕр. Эпир вара
сирĕн патăрта ĕççĕр ларман, [8] никамăн татăк
çăкăрне те тарам çимен. Сире чăрмав кӳрес марччĕ
тесе çĕрĕн-кунĕн ĕç ĕçлесе пурăнтăмăр. [9] Паллах,
ĕненекенсен шучĕпе пурăнма пирĕн ирĕк пур,
анчах та, сирĕншĕн тĕслĕх пулас тесе, эпир хамăра
хамăр тăрантарса пурăнтăмăр. [10] Сирĕн патăрта
пурăннă чухнех эпир сире çапла вĕрентеттĕмĕр:
«Кам ĕçлемест, çав çимест». [11] Анчах та сирĕн
патăрта хăшĕ-пĕрисем ĕçлеме ӳркенеççĕ, ĕçрен
тарма тăрăшаççĕ текен сас-хура пирĕн хăлхана та
кĕчĕ. [12] Унашкаллисене Иисус Христос Хуçамăр
ячĕпе пули-пулми сăмах вакламасăр ĕçлеме,
хăйсене хăйсем тăрантарса пурăнма ӳкĕтлетпĕр.
[13] Эсир вара, тăвансем, ырă туса пурăннăшăн ан
хуйхăрăр. [14] Çак çыруri сăмахсене кам та кам
пăхăнас темест, астуса юлăр та, ăна намăс пултăр
тесе, унпа хутшăнса ан пурăнăр. [15] Анчах та ăна
тăшман вырăнне ан хурăр, тăвана ӳкĕтленĕ пек
ӳкĕтлĕр.

### Пиллени

[16] Сире канăçлăх Турри Хăй пур енчен те яланах
канăçлăх патăр. Хуçа Турă сирĕнпе пуринпе те
пултăр.

[17] Çырусене чăнласах хам янине паллă тумашкăн
эпĕ, Павел, хам аллăмпах çапла çырса саламлатăп.
[18] Сире пурне те Иисус Христос Хуçамăрăн ырăлăхĕ
пултăр. Аминь.

# Тимофей патне 1-мĕш

### Саламлани

1 Хамăра Çăлакан Туррăмăр тата хамăр
шанчăкăмăр Иисус Христос Хуçамăр хушнипе
Унăн апостолĕ пулма тивĕçнĕ Павелран – 2 ĕненӳри
чăн-чăн ывăлăма Тимофея. Сана Атте Туррăмăрпа
Христос Иисус Хуçамăртан ырăлăх, тивлет тата
канăçлăх пултăр.

### Суя вĕрентӳсенчен асăрхаттарни

3 Хам Македоние çула тухас умĕн эпĕ сана
Ефесрах юлма ыйтнăччĕ, унти суя вĕрентӳсем
саракансене чарăнма хушса ӳкĕтлеме ыйтсаттăм.
4 Эсĕ вĕсене халап хыççăн кайма, йăх-несĕл
тымарĕсене тĕпчесе вĕççĕр-хĕрсĕр аппаланма чар.
Унашкал аппаланни тавлаштарса ярать кăна, Турă
хушнă пек ĕненме чăрмантарать кăна. 5 Ӳкĕтĕн
тĕллевĕ вара – таса чĕререн, таса чунран, чăн-чăн
ĕненӳрен килекен юратулăх. 6 Хăшĕ-пĕрисем, çак
тĕллеврен пăрăнса, пуш сăмах çаптарас çул çине
тăнă. 7 Вĕсем Турă йĕркине вĕрентесшĕн, анчах та
хăйсем мĕн каланине, мĕне ĕнентересшĕн пулнине
хăйсем те ăнланмаççĕ.
8 Саккунпа тĕрĕс усă куракан çыншăн саккун
лайăххине эпир пĕлетпĕр. 9 Унашкал çын хăй те
çакна лайăх пĕлет: саккуна тӳрĕ пурăнакансем
валли çырман. Саккун вăл – йĕркесĕррисемпе
пăхăнманнисем валли, Турра хисеплеменнисемпе
çылăхлисем валли, пăсăккисемпе ирсĕррисем
валли, ашшĕ-амăшĕ çине алă çĕклекенсем валли,
çын вĕлерекенсем валли, 10 ясаррисем валли,
арçынпа асакан арçынсем валли, чура сутуçисем
валли, элекçĕсем, выльăхпа асакан арçынсем
валли, суеçĕсем, тупа тунине пăсакансем валли,
тĕрĕс вĕрентĕве хирĕçлекен мĕн пур çын валли.
11 Ырăлăхлă Туррăн мухтавлă Ырă Хыпарне
пĕлтерме мана та шанса панă.

### Хĕрхеннĕшĕн Турра тав туни

12 Хама вăй-хăват панă Христос Иисус Хуçамăра
тав тăватăп. Вăл мана шанса Хăйшĕн ĕçлеме ирĕк
пачĕ. 13 Эпĕ малтан Христоса ĕненекенсене
хурлаттăм, хĕсĕрлеттĕм, кӳрентереттĕм. Анчах та
эпĕ пĕлменрен, ĕненменрен çапла хăтланнă пирки
Турă мана хĕрхенчĕ. 14 Иисус Христоса ĕненсе
юратсан вара чун-чĕрем Хуçамăрăн Иисус
Христосăн ырăлăхĕпе тулчĕ. 15 Эпĕ калани чăн, çав
сăмаха пирĕн тĕппипех йышăнмалла: Христос
Иисус çак тĕнчене çылăхлисене çăлма килнĕ. Эпĕ –
çылăхлисенчен те çылăхлăрах. 16 Христос Иисус
Хăйĕн виçесĕр чăтăмлăхне чи малтан ман урлă
палăрттăр тесе, малашлăхра Хăйне ĕненекенсем
ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулмашкăн манра тĕслĕх
курччăр тесе Турă мана хĕрхенчĕ те. 17 Ĕмĕрлĕх
Патшине, вилĕмсĕр те курăнми пĕртен-пĕр
ăслăран та ăслă Турра, ĕмĕр-ĕмĕр чыс та мухтав
пултăр. Аминь.
18 Тимофей ывăлăм! Сан пирки тахçанах каланă
пророкла сăмахсемпе килĕшӳллĕн эпĕ сана канаш
паратăп. Çав сăмахсемпе хĕç-пăшалланса лайăх çар
çынни пек çапăç, 19 ĕненӳллĕ те таса чунлă пул.
Хăшĕ-пĕрисем çав пахалăхсене çухатрĕç те, вĕсен
ĕненĕвĕ карап путнă пек путланчĕ.
20 Çавнашкаллисем хушшинче – Именейпе
Александр. Эпĕ вĕсене, Турра хурласа калаçма
юраманнине пĕлччĕр тесе, шуйттана патăм.

### Кĕлтума вĕрентни

2 Чи малтанах эпĕ сана çакна каласшăн: мĕн пур
çынсемшĕн Турра кĕлтăвăр, тархаслăр,
йăлăнăр, тав тăвăр. 2 Хамăрăн лăпкăн та канăçлăн,
Турра хисеплесе, тасан пурăнмалла пултăрччĕ тесе,
патшасемшĕн те, мĕн пур пуçлăхсемшĕн те
кĕлтăвăр. 3 Çапла туни Турăшăн, Çăлаканăмăршăн
аван, юрăхлă. 4 Турă мĕн пур çын çăлăнтăр, чăнлăха
пĕлсе çиттĕр тет. 5 Мĕншĕн тесен Турă пĕрре,
этемпе Турă хушшинче Тăраканни те – Иисус
Христос çын – пĕрре. 6 Мĕн пур çынсене çылăхран
тӳлесе илес тесе, Вăл Хăйĕн пурăнăçне панă. Хăй
вăхăтĕнче çапла çирĕплетсе пĕлтернине 7 ытти
халăхсем хушшине сармашкăн мана ӳкĕтлевçĕ тата
апостол пулма суйланă. Эпĕ суймастăп, Христос
умĕнче чăннине калатăп! Мана Турра пĕлмен
халăхсене чăнлăхпа ĕненӳ çинчен каласа вĕрентме
суйланă.
8 Çапла ĕнтĕ, эпĕ арçынсен пур ял-хулара та
кĕлтумалла тетĕп. Вĕсем çилленмесĕр,
иккĕленмесĕр аллисене Турă патнелле таса
шухăшпа çĕклеччĕр тетĕп. 9 Тата хĕрарăмсем те
тирпейлĕ тумтирпе çӳреччĕр, вăтанма, таса
шухăшлă пулма пĕлччĕр. Çӳçне-пуçне капăрлатас,
ылтăнпа тата ĕнчĕпе илемленес, чаплă тум тăхăнас
вырăнне 10 ырă ĕç туса палăрччăр. Турра
хисеплекен хĕрарăмсен çапла пулмалла та.
11 Ӳкĕтсене хĕрарăм пĕр сăмахсăр, хирĕçлемесĕр
итлетĕр. 12 Хĕрарăм арçынна ан вĕренттĕр, унпа ан

хуҫалантӑр, чӗнмесӗр тӑтӑр. 13 Ҫакна эпӗ акӑ
мӗншӗн калатӑп: Турӑ малтан Адама пултарнӑ,
кайран – Евӑна. 14 Адам хӑй улталанман, хӗрарӑм,
илӗртӗнсе, ҫылӑха кӗнӗ. 15 Анчах та хӗрарӑм ача
ҫуратса ӳстерсе ҫӑлӑнма пултарать. Паллах, ҫӑлӑнас
тесессӗн унӑн ӗненсе, юратса, таса, виҫине пӗлсе
пурӑнмалла.

### Чиркӳ пуҫлӑхӗсен мӗнле пулмалла

3 Чӑннипех, кам чиркӳ пуҫлӑхӗ пуласшӑн, ҫав
ырӑ ӗҫ тӑвасшӑн. 2 Анчах та чиркӳ пуҫлӑхӗн
никам тиркейми тӳрӗ пурӑнмалла: пӗрре кӑна
авланмалла, хӑйне хӑй тытма пӗлмелле. Унӑн таса
шухӑш-кӑмӑллӑ, йӗркеллӗ, тараватлӑ пулмалла,
вӗрентме пӗлмелле. 3 Чиркӳ пуҫлӑхӗн ӗҫкӗҫ, ҫын
ҫине алӑ ҫӗклекен, чӑркӑш, хӑй уссишӗн
тӑрӑшакан, мулшӑн ҫунакан пулмалла мар. Вӑл
йӑваш та лӑпкӑ ҫын пултӑр. 4 Вӑл лайӑх кил хуҫи,
лайӑх ашшӗ пултӑр, ачисем ӑна хисеплеччӗр,
итлеччӗр. 5 Енчен те ҫын хӑйӗн кил-йышне,
хуҫалӑхне йӗркеллӗ тытаймасть пулсан, епле-ха
вӑл Турӑ Чиркӗвӗшӗн тӑрӑшайтӑр? 6 Чиркӳ
пуҫлӑхне анчахрах тӗне кӗнисене лартмалла мар,
мӗншӗн тесен унашкалли мӑнкӑмӑлланса кайма
пултарӗ. Вара, шуйттан пекех, суд айӑплавне тивӗҫ
пулӗ. 7 Тата чиркӳ пуҫлӑхӗ ҫинчен чиркӗве
ҫӳременнисем те ырӑпа калаҫчӑр. Ун пирки япӑх
калаҫсан унӑн шуйттан танатине лекмелле пулӗ.

### Чиркӳри пулӑшуҫӑсен мӗнле пулмалла

8 Ҫавнашкалах диаконсем те хисепе тивӗҫ ҫынсем
пулмалла. Вӗсем икӗ питлӗ, ӗҫкӗҫ, хӑй уссишӗн
тӑрӑшакан ҫынсем ан пулччӑр. 9 Ӗненӳ
вӑрттӑнлӑхне вӗсем таса чунӗсенче упраччӑр.
10 Чиркӳри пулӑшуҫӑ пулас текенсене вара малтан
тӗрӗслесе пӑхмалла, кӑлтӑк-сӑлтӑк тупӑнмасан тин
чиркӳре ӗҫлесе тӑма ирӗк памалла. 11 Чиркӳре
пулӑшса тӑракан хӗрарӑмсен те хисепе тивӗҫ
пулмалла. Вӗсем элекҫӗсем ан пулччӑр, хӑйсене
хӑйсем тытма пӗлччӗр, пур енчен те шанчӑклӑ
пулччӑр. 12 Чиркӳри пулӑшуҫӑ та пӗрре кӑна
авланнӑ ҫын пулмалла. Вӑл ачи-пӑчине те,
хуҫалӑхне те лайӑх пӑхаканскер пултӑр. 13 Мӗншӗн
тесен ӗҫӗсене лайӑх туса пынӑ чиркӳри
пулӑшуҫӑсем аслӑрах вырӑна кӗме тивӗҫеҫҫӗ,
Христос Иисуса ӗненсе вӗсем хӑюлланаҫҫӗ.

### Пирӗн ӗненӗвӗн вӑрттӑнлӑхӗ

14 Ҫакна эпӗ сан патна часах ҫитсе курасса шанса
ҫыратӑп. 15 Эпӗ часах пыраймасан, хӑвна Турӑ
ҫуртӗнче епле тыткаламаллине пӗлсе тӑтӑр тетӗп.
Турӑ ҫурчӗ вӑл – чӗрӗ Туррӑн Чиркӗвӗ, чӑнлӑх
никӗсӗпе тӗрекӗ. 16 Паллах, эпир Турра хисепленин
вӑрттӑнлӑхӗ пысӑкран та пысӑк: Турӑ ӳтленсе
килнӗ, Вӑл Кам пулнине Сывлӑш ҫирӗплетнӗ, Ӑна
ангелсем те курнӑ, Ун ҫинчен ытти халӑхсене
ӳкӗтлесе вӗрентнӗ, тӗнче Ӑна ӗненсе йышӑннӑ,
тӳпене Вӑл мухтавлӑхпа ҫӗкленнӗ.

### Ӗненме пӑрахас вӑхӑтсем ҫинчен калани

4 Юлашки вӑхӑтсенче хӑшӗ-пӗрисем ӗненме
пӑрахасси ҫинчен Святой Сывлӑш татӑклӑн
калать. Вӗсем аташтаракан сывлӑшсене итлӗҫ,
шуйттанла вӗрентӳсем хыҫҫӑн кайӗҫ. 2 Ҫавнашкал
вӗрентӳсене икӗ питлӗ, ҫунса кӗлленнӗ чунлӑ суя
вӗрентӳҫӗсем сарӗҫ. 3 Вӗсем мӑшӑрланма, хӑш-пӗр
апат-ҫимӗҫе ҫиме чарӗҫ. Анчах та ӗненекенсем,
чӑнлӑха пӗлекенсем тав туса ҫиччӗр тесе пур апат-
ҫимӗҫе те Турӑ пултарнӑ-ҫке-ха. 4 Турӑ пултарни
вара йӑлтах лайӑх, тав туса йышӑнсассӑн йӑлтах
аван, 5 мӗншӗн тесен вӑл Турӑ сӑмахӗпе тата кӗлӗ
тунипе сӑвапланать.

### Христосӑн лайӑх тарҫи

6 Эсӗ ҫакна ӗненекен тӑвансене ӑнлантарса
парсассӑн, Иисус Христосӑн лайӑх тарҫи пулатӑн.
Лайӑх тарҫӑ вара ӗненӳ сӑмахӗсенчен тата хӑй
йышӑннӑ ырӑ вӗрентӳрен вӑй-хӑват илет. 7 Карчӑк-
кӗрчӗкӗн юрӑхсӑр сӑмах-юмахне итлессинчен
пӑрӑн, Турра хисеплессине аталантар. 8 Мӗншӗн
тесен ӳт-пӗве аталантарни пӗр енчен кӑна усӑллӑ,
Турра хисеплессине аталантарни вара пур енчен те
усӑллӑ. Вӑл пире хальхи пурӑнӑҫра та шанчӑк
парать, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗме те шантарать.
9 Сӑмахӑм тӗрӗс, ӑна пурте тӗппипех йышӑнма
тивӗҫ. 10 Мӗншӗн тесен эпир чӗрӗ Турра шаннӑран
тӑрӑшатпӑр, хур кӑтартнине тӳсетпӗр. Чӗрӗ Турӑ
вара – пур ҫынна та, уйрӑммӑнах ӗненекенсене,
Ҫӑлакан.
11 Ҫапла каласа ӳкӗтле, вӗрент. 12 Сана ҫамрӑк тесе
никам та ҫӳлтен ан пӑхтӑр. Ӗненекенсем санӑн
сӑмахна, пурӑнӑҫна, юратулӑхна, чун-чӗмне,
ӗненӗвне, тасалӑхна тӗслӗх вырӑнне хучча́р. 13 Эпӗ
пыриччен эсӗ ҫынсене Ҫырнине вуласа пар, ӳкӗтле,
вӗрент. 14 Пророкла каланисемпе килӗшӳллӗн
священниксем алӑ хунипе хӑвна панӑ
пултарулӑхна сая ан яр. 15 Пурин куҫӗ умӗнче те сан
ҫитӗнӗвӳсем паллӑ пулччӑр тесен, яланах тивӗҫӳ
ҫинчен шухӑшла, пӗтӗм чунна парса тӑрӑш.
16 Хӑвна та, ху мӗне вӗрентнине те лайӑхрах пӗлме
тӑрӑш. Ҫапла тусассӑн ҫеҫ эсӗ хӑвна та, хӑвна
итлекенсене те ҫӑлма пултарӑн.

### Ӗненекенсем умӗнче хӑвна мӗнле тыткаламалла

5 Ватӑ ҫынна ӳпкелешмесӗр, аҫу вырӑнне хурса,
ҫамрӑксене шӑллу вырӑнне хурса ӳкӗтле.
2 Карчӑксене аннӳ вырӑнне хурса, ҫамрӑк
хӗрарӑмсене йӑмӑку вырӑнне хурса таса чунлӑн
ӳкӗтле.
3 Хӑр тӑлӑх тӑрса юлнӑ арӑмсене хисеплесе
пулӑш. 4 Енчен те тӑлӑх арӑмӑн ачисем е
мӑнукӗсем пулсассӑн, вӗсем чи малтан кил-йышне
хисеплеме вӗренччӗр. Ачи-пӑчисем ашшӗ-амӑшне

ырӑпа тавӑрччӑр. Ҫапла туни Турра юрӑхлӑ. 5 Чӑн-
чӑн тӑлӑх арӑм, пӗччен юлсан та, Турра шанать,
кунӗн-ҫӗрӗн Турра йӑлӑнса кӗлтӑвать. 6 Килентсе
кӑна пурӑнакан тӑлӑх арӑм вара чӗрӗллех вилнӗ
пулать. 7 Ҫаксене йӑлтах эсӗ вӗсене каласа
ӑнлантар. Вара вӗсем тасан пурӑнӗҫ. 8 Кам
тӑванӗсемшӗн, уйрӑммӑнах кил-йышӗшӗн,
тӑрӑшмасть, ҫав ӗненӳрен пӑрӑннӑ, унашкалли
ӗненмен ҫынран та япӑхрах. 9 Утмӑл ҫула
ҫитнисене, пӗрре кӑна качча кайнисене чиркӳри
тӑлӑх арӑмсен шутне кӗрт. 10 Ҫав тӑлӑх арӑмсен ырӑ
ӗҫӗсемпе палӑрмалла: ачисене пӑхса ӳстермелле,
ӗненекен ҫул ҫӳренсемпе тараватпулмалла,
ӗненекен тӑвансен урисене ҫуса ямалла, инкеке
лекнисене пулӑшмалла, кирек епле ырӑ ӗҫе те
тӑрӑшса тумалла. 11 Ҫамрӑккисене вара чиркӳри
тӑлӑх арӑмсен шутне ан кӗрт. Мӗншӗн тесен
Христоса чунтан парӑнас вырӑнне вӗсем ӳт-пӳ
хистени хыҫҫӑн каяҫҫӗ, качча тухас шухӑшпа
пурӑнаҫҫӗ. 12 Вӗсем ӗненӗве чунтан парӑнмашкӑн
маларах панӑ сӑмахне тытмаҫҫӗ, ҫавӑнпа та айӑпа
тивӗҫлӗ. 13 Тата вӗсем ӗҫсӗр аптӑраса килрен киле
ҫӳреме хӑнӑхаҫҫӗ. Вӗсем ӗҫсӗр аптӑраса ҫӳреҫҫӗ
кӑна мар, элек сараҫҫӗ, кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗре
хутшӑнса кӗрсе каяҫҫӗ, калама юраманнине
калаҫҫӗ. 14 Ҫапла вара, ҫамрӑк тӑлӑх арӑмсене
манӑн качча кайма, ача-пӑча ҫуратма, кил-ҫурта
пӑхса тӑма хушас килет. Ҫапла тусан вӗсем хамӑр
тӑшмансене усал сӑмах сарма сӑлтав памӗҫчӗҫ.
15 Вӗсенчен хӑшӗ-пӗри, ӗненме пӑрахса, шуйттан
хыҫҫӑн кайрӗ те ӗнтӗ. 16 Ӗненекенсен кил-йышӗнче
тӑлӑх арӑм пур пулсан, чиркӗве йывӑр ан пултӑр
тесе, тӑлӑха хӑйсемех пулӑшчӑр. Вара чиркӳ хӑр
тӑлӑх арӑмсене пулӑшма вӑй ҫитерӗ.
17 Чиркӗве ертсе пыракан пресвитерсене ,
уйрӑммӑнах тӑрӑшса ӳкӗтлекеннисене,
вӗрентекеннисене, ыттисенчен ытларах хисепле.
18 Мӗншӗн тесен Ҫырнинче ҫапла каланӑ: «Авӑн
ашакан вӑкӑрӑн ҫӑварне ан хупла» тата «Ӗҫлекен
ҫын тӳлев илме тивӗҫлӗ» (Саккуна астутарни 25:4;
Лука 10:7). 19 Иккӗн е виҫҫӗн айӑп кӑтартмасӑр
пресвитера айӑпланине ан йышӑн. 20 Ҫылӑха
кӗрекенсене, ыттисем хӑраччӑр тесе, пӗтӗм халӑх
умӗнче питле. 21 Турӑпа Иисус Христос Хуҫамӑр тата
ҫӳлти престол патӗнчи ангелсем умӗнче маларах
асӑрхаттарнине тытса пыма хушатӑп. Никама та
мала ан хур, кӑмӑлу хыҫҫӑн ан кай. 22 Алӑ хумалли
йӑлана та васкаса ан ту, пӗлнӗ-пӗлмен ҫынна
чиркӳре ӗҫлекен туса, унӑн ҫылӑхӗсене ан хутшӑн.
Чун тасалӑхне упра. 23 Шыв ӗҫсе кӑна ан пурӑн,
малашне кӑштах хӗрлӗ эрех те ӗҫкеле. Вара вар-
хырӑмна усӑ пулӗ, тӑтӑшах чирлемӗн.
24 Хӑш-пӗр ҫынсем ҫылӑха кӗни уҫҫӑнах палӑрать,
вӗсем айӑпланасси те халех курӑнать. Теприсен
ҫылӑхӗсем вара каярахпа тин паллӑ пулаҫҫӗ. 25 Ырӑ
ӗҫсем те ҫавнашкалах палӑраҫҫӗ; енчен те вӗсем
ырӑ мар пулсан, пытарӑнса юлаймӗҫ.

6 Турӑ ятне тата Унӑн вӗрентӗвне хур тума
парас мар тесен, пусмӑрта пурӑнакан чурасен
хӑйсен хуҫисене хисеплемелле. 2 Хӑш чурасен
хуҫисем хӑйсем те Турра ӗненеҫҫӗ пулсан, вӗсем
пирӗн ӗненекен тӑвансем-ха тесе, чурасен хӑйсен
хуҫисене хисеплемесӗр тӑмалла мар. Пачах урӑхла,
хуҫисем хӑйсен савнӑ ӗненекен тӑванӗсем, ырӑ
тӑваканӗсем пулнине кура, чурасен хуҫисемшӗн
тата лайӑхрах тӑрӑшса ӗҫлемелле. Ҫапла ӳкӗтлесе
вӗрент.

### Суя вӗрентӳ тата чӑн-чӑн пуянлӑх

3 Кам та кам урӑхла вӗрентет, Иисус Христос
Хуҫамӑрӑн тӗрӗс сӑмахӗсемпе тата Турра
хисеплемелли вӗрентӳпе килӗшмест, – 4 ҫавӑ
мӑнкӑмӑллӑ, вӑл нимӗн те пӗлмест. Анчах та, ҫиеле
тухасшӑн, яланах тавлашать. Тавлашусем вара
кӗвӗҫӳ, хирӗҫӳ, йывӑр сӑмах, киревсӗр шанманлӑх
ҫуратаҫҫӗ. 5 Усӑсӑр тавлашусем пӑсӑк ӑслӑ ҫынсем
хушшинче сиксе тухаҫҫӗ. Вӗсем, чӑнлӑха ҫухатса,
Турра хисеплени пуйтарать тесе шухӑшлаҫҫӗ.
Унашкаллисемпе ан ҫыхлан . 6 Мӗн пуррипе
ҫырлахма пӗлекен ҫынсемшӗн Турра хисеплени,
чӑнах та, пысӑк пуянлӑх.
7 Мӗншӗн тесен эпир ку тӗнчене пуш алӑпа
килнӗ, каясса та, паллах, пуш алӑпах кайӑпӑр.
8 Ҫимелли, тумланмалли пулсассӑн ҫырлахӑпӑр.
9 Пуяс текенсем вара, шуйттан илӗртнипе
улталанса, танатана ҫакланаҫҫӗ. Вара вӗсем тӗрлӗ
ӑссӑр та сиенлӗ шухӑш-кӑмӑл хыҫҫӑн кайса шар
кураҫҫӗ, пӗтеҫҫӗ. 10 Мӗншӗн тесен пӗтӗм инкек-
синкек сӑлтавӗ – укҫана юратни. Хӑшӗ-пӗри, укҫа
хыҫҫӑн хӑваласа, ӗненӗвӗн тӗрӗс ҫулӗнчен пӑрӑнса
кайрӗҫ те хӑйсене валли хӑйсемех нумай хуйхӑ
тупрӗҫ.

### Ӗненӳшӗн чыслӑн кӗрешесси

11 Эсӗ вара, Туррӑн ҫынни, унашкаллинчен
пӑрӑнса ҫӳре; тӳрӗлӗх, Турра хисеплени, ӗненӳ,
юратулӑх, чӑтӑмлӑх, йӑвашлӑх патне ӑнтӑл. 12 Эсӗ
ӗненӳшӗн чыслӑн кӗреш. Сана ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа
кӗмешкӗн суйласа илнӗ. Эсӗ ун ҫинчен нумай ҫын
умӗнче аван ҫирӗплетсе пӗлтертӗн. Ӗмӗрлӗх
пурӑнӑҫа кӗресчӗ тесе тӑрӑш. 13 Пурне те пурӑнӑҫ
паракан Турӑ ячӗпе тата Понтий Пилат умӗнче Хӑй
ҫинчен чаплӑн каласа пӗлтернӗ Христос Иисус
ячӗпе сана ҫапла хушса калатӑп: 14 Иисус Христос
Хуҫамӑр тепре киличченех хӑвна мӗн хушнине
тасан та лайӑххӑн туса пурӑн. 15 Палӑртнӑ вӑхӑт
ҫитсессӗн пӗртен-пӗр, хӑватлӑ, ырӑлӑхлӑ патшасен
Патши, хуҫасен Хуҫи тӗнчене Христоса ярӗ. 16 Турӑ –
пӗртен-пӗр вилӗмсӗрскер, ҫитме ҫук ҫутӑра
пурӑнаканскер, этемсенчен пӗри те Ӑна курман,
кураяс та ҫук. Вӑл ӗмӗр-ӗмӗр мухтавлӑ та хӑватлӑ!
Аминь.
17 Ку тӗнчере пуяннисене каласа ӳкӗтле: вӗсем
хӑйсене ытлашши мӑнна ан хуччӑр, ултавлӑ

пуянлӑхне мар, чӗрӗ Турра шанччӑр. Пире савӑнса
пурӑнма мӗн кирлине Турӑ туллин парать.
18 Пуянсене ырӑ ӗҫ тума ӳкӗтле, вӗсем ырӑ ӗҫӗсемпе
пуян пулччӑр, укҫи-тенкине ан хӗрхенччӗр, яланах
пулӑшма хатӗр пулччӑр. 19 Ҫапла тусан вӗсем
ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗмешкӗн мул пухӗҫ. Ҫав мул
вара – пуласлӑхӑн ҫирӗп никӗсӗ.

20 Тимофей! Хӑвна шанса панине упра. Пуш
сӑмахран тата пӗлӳ текен, анчах чӑнлӑха
хирӗҫлекен суя сӑмахран пӑрӑн. 21 Шел пулин те,
хӑшӗ-пӗрисем, ҫавнашкал пӗлӳ хыҫҫӑн кайса,
ӗненӳрен пӑрӑнчӗҫ. Сана Турӑ тивлечӗ пултӑр.
Аминь.

# Тимофей патне 2-мӗш

### Саламлани

1 Турӑ ирӗкӗпе Иисус Христос апостолӗ пулма
тивӗҫнӗ, Христос Иисус урлӑ ӗмӗрлӗх
пурӑнӑҫлӑ пулма шанчӑк илнӗ Павелран –
2 ӗненӳри савнӑ ывӑлӑма Тимофея. Атте Турӑпа
Иисус Христос Хуҫамӑртан сана ырӑлӑх, тивлет,
канӑҫлӑх пултӑр.

### Ырӑ Хыпара чунтан парӑнни

3 Эпӗ Турӑшӑн мӑн асаттемӗрсем пекех таса чунпа
ӗҫлесе тӑрататӑп. Хамӑн кӗллӗмре эпӗ сана ҫине-
ҫинех, ирӗн-каҫӑн асилетӗп, саншӑн Турра тав
тӑвататӑп. 4 Эсӗ маншӑн куҫҫуль тӑкнине асилетӗп те
– сана курассӑм килет. Курса чун-чӗререн
савӑнӑттӑмччӗ. 5 Эсӗ чунтан ӗненнине те асилетӗп.
Лоида асаннӳ те, Евника аннӳ те ҫавнашкалах
ӗненетчӗҫ. Ҫав ӗненӳ санра пуррине шанатӑп.
6 Ҫавӑнпа та асту, Турӑ панӑ пултарулӑха сӳнме ан
пар; ҫав пултарулӑха эпӗ сана алӑ хурсах
парсаттӑм. 7 Турӑ пире хӑрав сывлӑшне паман-ҫке-
ха. Вӑл пире хӑватлӑ, юратуллӑ, таса ӑслӑ сывлӑш
панӑ. 8 Эппин Иисус Христос Хуҫамӑр ҫинчен
ҫирӗплетсе пӗлтермешкӗн ан вӑтан. Манран та,
Уншӑн тӗрмере лараканскертен, ан имен. Христос
ҫинчен Ырӑ Хыпар пӗлтернӗшӗн асап курасран ан
хӑра, мӗншӗн тесен Турӑ пире вӑй парсах тӑрать.
9 Турӑ пире ӗҫӗмӗрсене кура мар, Хӑйӗн шухӑш-
кӑмӑлӗпе, ырӑлӑхӗпе ҫӑлнӑ, Хӑйӗн халӑхӗ пулма
чӗнсе илнӗ. Вӑл пире ҫав ырӑлӑха Иисус Христос
урлӑ ӗмӗрсем пуҫланиччен пама пулнӑ. 10 Анчах
та пама пулни халӗ тин, Ҫӑлаканӑмӑр Иисус
Христос килсессӗн, палӑрнӑ. Вӑл вилӗме тӗп тунӑ,
Ырӑ Хыпар урлӑ тӗнчене ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ илсе
килнӗ. 11 Ҫав Ырӑ Хыпара пӗлтермешкӗн мана
ӳкӗтлевҫӗ тата апостол, ытти халӑхсен вӗрентӳҫи
тунӑ. 12 Асапӑм та манӑн ҫав сӑлтава пула, анчах та
эпӗ вӑтанмастӑп. Мӗншӗн тесен эпӗ Кама
ӗненнине пӗлетӗп, ҫав юлашки кун ҫитиччен Вӑл
Хӑй мана шантарнине те вӑйра хӑварасса пӗлетӗп.
13 Ху манран илтнӗ чӑн-чӑн вӗрентӗве тӗслӗх
вырӑнне хурса Иисус Христос панӑ ӗненӳпе тата
юратулӑхпа пурӑн. 14 Хӑвна Турӑ шанса панӑ
ыррине ӑшӑмӑрти Святой Сывлӑш пулӑшнипе
упра.
15 Асирисем пурте, ҫав шутрах Фигелпа Ермоген
та, мана пӑрахнине эсӗ пӗлетӗн ӗнтӗ. 16 Онисифор
кил-йышне Хуҫамӑр ырӑлӑх патӑрах. Эпӗ тӗрмере
ларнинчен вӑтанмасӑрах Онисифор мана
хавхалантарсах тӑчӗ. 17 Унтан та ытларах, хӑй
Римра чухне вӑл мана шыраса тупма пултарчӗ.
18 Ҫав юлашки кун ҫитсен Хуҫамӑр ӑна Хӑйӗн
ырӑлӑхне курмалла тутӑрах. Ефесра вӑл мана мӗн
тери пулӑшнине эсӗ хӑвах лайӑх пӗлетӗн.

### Иисус Христосӑн шанчӑклӑ салтакӗ

2 Ҫапла вара, ывӑлӑм, Христос Иисусри
ырӑлӑхпа тӗреклен. 2 Эпӗ сана нумай ҫын
умӗнче вӗрентсе каланӑччӗ. Эсӗ ҫавна шанчӑклӑ,
ыттисене ӳкӗтлеме пултаракан ҫынсене вӗрент.
3 Ӗнтӗ Иисус Христосӑн шанчӑклӑ салтакӗ пек пулса
хӗн-хура тӳс. 4 Нимӗнле ҫар ҫынни те пурӑнӑҫри
вак-тӗвек ӗҫсемпе аппаланмасть. Ун пек вӑл
пуҫлӑхне юраймӗ. 5 Ӑмӑртӑва хутшӑнакан та,
йӗркене пӑсса ӑмӑртсан, ҫӗнтерӳҫӗ пуҫ кӑшӑлне
нихӑҫан та тивӗҫ пулаймӗ. 6 Тертленсе тырӑ-пулӑ
ӳстернӗ ҫӗр ӗҫченӗ те хӑйӗн пайне чи малтан илме
тивӗҫ. 7 Эпӗ мӗн калани пирки тӗплӗн шухӑшла.
Хуҫамӑр сана йӑлтах ӑнланмалла тутӑрах.
8 Вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ Иисус Христос Хуҫамӑра,
Давид йӑхӗнчен тухнӑскере, яланах асра тыт. Эпӗ
пӗлтерекен Ырӑ Хыпар – Ун ҫинчен. 9 Вӑрӑ-хураха
сӑнчӑрланӑ пек, мана Ырӑ Хыпар пӗлтернӗшӗн
сӑнчӑрларӗҫ. Анчах та Турӑ сӑмахне сӑнчӑрлаймӑн.
10 Ҫавӑнпа, суйласа илнисем те Иисус Христоспа
пӗрлӗхлӗ пулса ҫӑлӑнӑҫ тата ӗмӗрлӗх мухтав
илччӗр тесе, эпӗ вӗсемшӗн тем тӳсме те хатӗр.
11 Ҫак сӑмахсем чӑн: эпир Унпа пӗрле вилнӗ пулсан,
Унпа пӗрлех чӗрӗлӗхлӗ пулӑпӑр. 12 Эпир тӳсетпӗр
пулсан, Унпа пӗрлех патшара ларӑпӑр. Эпир Унран
тунсан, Вӑл та пирӗнтен тунӗ. 13 Эпир шанчӑклӑ
пулмасан та, Вӑл яланах шанчӑклӑ, мӗншӗн тесен
Вӑл Хӑйӗнчен Хӑй тунма пултараймасть.

### Ырӑ ята тивӗҫнӗ ӗҫчен

14 Ҫынсене ҫакна асилтерсех тӑр: вӗсем хӗрӳ
тавлашусене ан хутшӑнччӑр тесе Хуҫа Турӑ ячӗпе
тархасла. Унашкал тавлашусем итлекенсене усӑ
мар, сиен кӑна кӳреҫҫӗ. 15 Турӑ умӗнче ырӑ ята
тивӗҫмешкӗн тӑрӑш; пӗр кӑлтӑксӑр ӗҫчен пек,
чӑнлӑх сӑмахне тӗрӗс вӗрент. 16 Юрӑхсӑр, пуш
калаҫусенчен пӑрӑн, мӗншӗн тесен пуш сӑмах
вӗҫтерекенсем сӳпӗлтете-сӳпӗлтете Турра
хисеплеми пулсах пырӗҫ. 17 Вӗсен сӑмахӗ рак чирӗ
пек сарӑлӗ. Именейпе Филит та ҫавнашкалах
18 чӑнлӑхран пӑрӑнса кайнӑ. Вӗсем, вилӗмрен

чӗрӗлсе тӑрасси пулса иртнӗ ӗнтӗ тесе, хӑшӗ-
пӗрисен ӗненӗвне пӑсаççӗ. [19] Анчах та Турӑ хывнӑ
никӗс çирӗппипех; унта çапла çырнӑ: «Хуçа Турӑ
Хӑйӗннисене пӗлет». Тата çапла çырнӑ: «Хуçа Турӑ
ятне асӑнакан кирек кам та йӗркесӗрлӗхрен
пӑрӑнтӑр». [20] Пысӑк кил-çуртра вара ылтӑн-кӗмӗл
савӑт кӑна мар, йывӑçпа тӑм савӑт та пур.
Пӗрисемпе чаплӑ лару-тӑрура усӑ кураççӗ,
теприсемпе – кулленхи пурӑнӑçра. [21] Çапла вара,
йӗркесӗрлӗхрен тасатнӑ çын чаплӑ савӑт евӗр. Вӑл
– Хуçине юрӑхлӑ, сӑвапласа тасатнӑ, тӗрлӗрен ырӑ
ӗçре усӑ курмалли хатӗр. [22] Яш ӗмӗрӗн çылӑхлӑ
шухӑшӗсенчен тар. Хуçа Турӑ ятне таса чун-чӗрепе
асӑнакансемпе пӗрле эсӗ тӳрӗлӗх, ӗненӳ, юратулӑх,
канӑçлӑх патне ӑнтӑл. [23] Ӑссӑр та айван
тавлашусене ан хутшӑн: вӗсем хирӗçӳ кӑларнине
эсӗ хӑвах пӗлетӗн. [24] Хуçа Турӑ чурин хирӗçмелле
мар, пуринпе те сӑпайлӑ пулмалла, ӳкӗтлеме
пӗлмелле, çилӗ тытмалла мар. [25] Хӑйне
хирӗçлекенсене те унӑн йӑвашшӑн ӳкӗте
кӗртмелле. Шуйттан вӗсене хӑй танатине лектернӗ,
хӑйне пӑхӑнтарнӑ. Çав танатаран хӑтарасчӗ тесе,
чӑнлӑха пӗлмешкӗн Турӑ вӗсене ӳкӗнтерессе
шанса вӗрентмелле.

### Юлашки вӑхӑтсенче

3 Çакна пӗлсе тӑр: юлашки кунсенче йывӑр
вӑхӑтсем çитӗç. [2] Мӗншӗн тесен çынсем
хӑйсене тата укçана кӑна юратӗç. Вӗсем
мӑнкӑмӑллӑ, мухтанчӑк, усал чӗлхеллӗ пулӗç;
ашшӗ-амӑшне итлеме пӑрахӗç. Вӗсем тав тума та,
çынна юратма та, Турра хисеплеме те пӗлмӗç. [3] Ун
чухне çынсем каçарма пӗлми, элекçӗ, хӑйсене
чарайми, хаяр, ыррине курайми пулӗç. [4] Вӗсем
сутӑнчӑк, сӗмсӗр, каппайчӑк пулӗç; Турра юратас
вырӑнне киленсе пурӑнма юратӗç. [5] Вӗсем Турра
хисепленçи тӑвӗç, анчах та ӑшра хисеплемӗç. Эсӗ
вӗсемпе ан çыхлан. [6] Унашкаллисем ют кил-йыша
йӑпшӑнса кӗрсе каяççӗ те çӑмӑлттай хӗрарӑмсен
ӑс-хакӑлне тыткӑнлаççӗ. Çылӑх ӑшне путнӑ
хӗрарӑмӗсем те тӑрлавсӑр кӑмӑлӗсем хыççӑн
каяççӗ. [7] Вӗсем çӗнӗрен те çӗнӗ вӗрентӳсем хыççӑн
хӑваласа чӑнлӑх мӗнне пӗлеймесӗрех юлаççӗ.
[8] Ианнийпе Иамврий Моисея епле хирӗçленӗ, çав
суя вӗрентӳçӗсем те çаплах чӑнлӑха хирӗç тӑраççӗ.
Вӗсем пӑсӑк ӑслӑ, чӑн ӗненӳ мӗнне те пӗлмеççӗ.
[9] Анчах та вӗсем инçех каяймӗç, мӗншӗн тесен
вӗсен ӑссӑрлӑхӗ, лешсенни пекех, пӗтӗм халӑх
умӗнче палӑрӗ.

### Тимофея юлашкинчен вӗрентсе калани

[10] Ӳкӗтӗм, пурӑнӑçӑм, тӗллевӗм, ӗненӗвӗм,
чӑтӑмлӑхӑм, юратулӑхӑм, çирӗплӗхӗм, терт-асапӑм
– çаксем пурте саншӑн тӗслӗх. Антиохипе Иконире
тата Листрӑра мана ӗненӳшӗн мӗнле хӗн-хур, терт-
асап кӑтартнине эсӗ пӗлетӗн. Çав хӗн-хура эпӗ
тӳссе ирттертӗм. Хуçа Турӑ мана хӑтарса хӑварчӗ.
[11] Тепӗр тесен, Турра хисеплесе, Христос Иисуспа
пӗрлӗхлӗ пулса пурӑнас текенсене пурне те
хӗсӗрлӗç. [13] Усал çынсемпе ултавçӑсем вара,
улталаса та улталанса, тата усалтарах ӗçсем тӑвӗç.
[14] Эсӗ хӑвна мӗне вӗрентнине, мӗн шанса панине
çирӗп тытса пыр. Хӑвӑн вӗрентекенӳсене вара эсӗ
аван пӗлетӗн. [15] Çитменнине, эсӗ ачаранах Таса
Çырнине пӗлсе çитӗннӗ. Çырнинче мӗн калани
сана Христос Иисуса ӗненсе çӑлӑнӑç тупмашкӑн
ӑслӑлӑх парать. [16] Турӑ чурине чунпа аталанса
çитмешкӗн, ырӑ ӗç тума хатӗр пулмашкӑн Çырни
пур. Ӑна Турӑ Сывлӑшӗн витӗмӗпе çырнӑ. Çырни
вӗрентме те, питлеме те, тӗрӗс çул çине кӑларма та,
тӳрӗ пурӑнмашкӑн ӳкӗтлеме те усӑллӑ.

4 Иисус, тепре килсессӗн, Унӑн Патшалӑхӗ
çитсессӗн, чӗррисене те, вилнисене те суд
тӑвӗ. Турӑпа Иисус Христос Хуçамӑр ячӗпе
тархасласа сана çакна калатӑп: [2] Турӑ сӑмахне
кирек хӑçан та çине тӑрса вӗрент, кирлӗ чухне
çынсене питле, чар, пӗтӗм чӑтӑмлӑхупа ӑс парса
ӳкӗтле. [3] Вӑхӑт çитсессӗн çынсем чӑн вӗрентнине
итлес темӗç. Хӑйсен кӑмӑлне тивӗçтермешкӗн
вӗсем йӑпӑлтатакан, хитре калаçакан
вӗрентекенсене суйлӗç. [4] Юмах юптарнине юратса,
тӗрӗс сӑмахран пӑрӑнӗç. [5] Эсӗ вара пур тӗлӗшӗнчен
те тимлӗ пул, хӗн-хура тӳс, Ырӑ Хыпар сар, хӑвӑн
тивӗçе пурнӑçла.
[6] Ӗнтӗ манӑн ку тӗнчерен каяс вӑхӑтсем çитрӗç,
пурӑнӑçӑма Турра кӳмешкӗн парне вырӑнӗ çине
хучӗç. [7] Паттӑррӑн кӗрешрӗм, пурӑнӑç çулне
вӗçлерӗм, ӗненӗве упраса хӑвартӑм. [8] Халӗ ман
валли çӗнтерӳçӗн тӳрӗлӗх пуç кӑшӑлне хатӗрлеççӗ.
Çав юлашки кун çитсен тӳрӗ суд тӑвакан Хуçамӑр
мана ӑна тӑхӑнтартӗ. Пуç кӑшӑлне Вӑл мана кӑна
мар, Хӑй тепре килессе савӑнса кӗтекенсене пурне
те парӗ.

### Уйрӑм хушусем

[9] Эсӗ ман пата хӑвӑртрах çитме тӑрӑш, [10] мӗншӗн
тесен Димас мана пӑрахрӗ. Ку тӗнчери пурӑнӑçа
ытларах килӗштерсе вӑл Фессалоникӑна кайрӗ.
Крискент Галатине тухса кайрӗ, Тит – Далматине.
Манпа пӗр Лука çеç юлчӗ. [11] Мана пулӑшакан
кирлӗ, çавӑнпа Марка хӑвпа пӗрле илсе кил.
[12] Тихика эпӗ Ефеса ятӑм. [13] Эпӗ Троадӑра Карп
патӗнче çиелти тумтирӗме хӑварнӑччӗ, килнӗ
чухне çавна илсе кил. Тата унтан манӑн кӗнекесене,
уйрӑмах тир çине çырнисене, илсе кил. [14] Пӑхӑр
ӑсти Александр мана нумай усал турӗ. Хуçа Турӑ ӑна
ӗçӗсене кура тавӑрса патӑрах! [15] Эсӗ те унран
асӑрхан, мӗншӗн тесен вӑл пирӗн вӗрентӗве питӗ
хирӗçчӗ.
[16] Эпӗ судра малтанхи хут хӳтӗленсе калаçнӑ
чухне мана хавхалантарма никам та пымарӗ, пурте
мана пӑрахрӗç. Çавӑ вӗсен çылӑхӗ шутне ан
кӗтӗрччӗ! [17] Ырӑ Хыпара манӑн пӗлтерсе
çитермелле пултӑр тесе, ытти халӑхсем пурте çавна
илтме пултарччӑр тесе, мана Хуçа Турӑ пӑрахмарӗ,

вӑй пачӗ. Çапла вара эпӗ хама арӑслансене
пӑрахса парасран хӑтӑлса юлтӑм. [18] Хуçа Турӑ мана
усал-тӗселтен хӑтартӑр, Хӑйӗн Çӳлти Патшалӑхне
тӗрӗс-тӗкел илсе кӗтӗр. Ӑна ӗмӗр-ӗмӗр мухтав
пултӑр! Аминь.

### Çыру вӗçӗнчи саламсем

[19] Прискиллӑпа Акилӑна тата Онисифор кил-
йышне салам кала. [20] Ераст Коринфрах юлчӗ, чирлӗ
Трофима вара эпӗ Милитра хӑвартӑм. [21] Хӗл
лариччен килме тӑрӑш. Сана Еввул та, Пуд та, Лин
та, Клавдия та, ытти ӗненекен тӑвансем те салам
яраççӗ. [22] Иисус Христос Хуçамӑр санӑн чун-чӗмӳпе
пӗрле пултӑр! Сире пурне те Турӑ ырӑлӑхӗ пултӑр!
Аминь.

# Тит патне

### Саламлани

1 Турӑ чуринчен тата Иисус Христос
апостолӗнчен Павелран – ӗненӳри чӑн
ывӑлӑма Тита. Мана Турӑ суйласа илнисене
ӗнентерме, вӗсене чӑнлӑха – Турра хисеплессине –
уҫса пама, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗмешкӗн шанчӑк
пама янӑ. Хӑйӗн сӑмахне тытакан Турӑ ҫав шанчӑка
чӑн малтанах пама пулнӑ. Палӑртнӑ вӑхӑт
ҫитсессӗн вара Ҫӑлакан Туррӑмӑр Хӑйӗн Сӑмахне
вӗрентме мана хушрӗ, мана шанса пачӗ. Атте
Турӑран тата Иисус Христос Хуҫамӑртан – хамӑра
Ҫӑлаканран – сана тивлет, ырӑлӑх тата канӑҫлӑх
пултӑр!

### Титӑн Критри тивӗҫӗсем

5 Пӗтермен ӗҫсене туса пӗтертӗр тесе, кашни
хуларах пресвитерсем ларттӑр тесе сана эпӗ
Критра хӑвартӑм. Эпӗ сана ҫапла хушнӑччӗ: 6 вӗсем
таса чунлӑ, арӑмне ӗмӗрлӗх парӑннӑ ҫынсем
пулмалла. Ачи-пӑчисем те вӗсен Турра
ӗненекенсем, аскӑн е чарусӑр ят илменскерсем
пулччӑр. 7 Мӗншӗн тесен чиркӳ ертӳҫин ӗненекен
ушкӑна, Турӑ ҫуртне йӗркелесе тӑракан пек, ертсе
пымалла, хӑйӗн таса пулмалла. Вӑл пуҫтах, кӑра,
ӗҫкӗҫ, ҫапӑҫакан, ҫӑткӑн ан пултӑр. 8 Пачах та
урӑхла, унӑн тараватлӑ, ырӑлӑхлӑ, таса шухӑшлӑ,
тӗрӗслӗхлӗ, Турра хисеплекен, хӑйне хӑй тытма
пӗлекен пулмалла. 9 Ҫынсене тӗрӗс вӗрентӳпе ӳкӗте
кӗртес тесен, хирӗҫҫисене питлеме пултарас тесен,
чиркӳ ертӳҫин хӑйне вӗрентнӗ чӑн сӑмаха ҫирӗп
тытса пурӑнмалла.
10 Ҫынсем хушшинче пӑхӑнас мар текенсем те,
пуш сӑмах ҫаптаракансем те,ултавҫӑсем те нумай-
ха. Ҫавнашкаллисем ӳт кастарнисем хушшинче
ытларах. 11 Вӗсен ҫӑварӗсене хупламалла: мула
хапсӑннипе вӗсем Турра юрӑхсӑррине вӗрентсе
ҫӳреҫҫӗ, ҫапла вара ҫынсене килӗ-килӗпе пӑсса
пӗтереҫҫӗ. 12 Вӗсен хӑйсен пӗр сӑвӑҫиех ҫапла
каланӑ пулнӑ: «Крит ҫыннисем – тискер кайӑксем,
харам пырсем – тӑтӑшах суеҫтереҫҫӗ!» 13 Вӑл
калани тӗрӗсех. Ҫавӑнпа та, ӗненӗве тӗрӗс тытса
пыччӑр тесе, иудейсен халапӗсене тата чӑнлӑхран
пӑрӑнса кайнӑ ҫынсем хушнине ан итлеччӗр тесе,
вӗсене вирлӗн питле. 15 Тасисемшӗн йӑлтах таса,
ирсӗррисемшӗн, ӗненменнисемшӗн таси нимӗн те
ҫук, мӗншӗн тесен вӗсен ӑсӗ те, чунӗ те
ирсӗрленнӗ. 16 Вӗсем Турра пӗлетпӗр теҫҫӗ, анчах
ӗҫӗсемпе Турра хирӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем киревсӗр,
итлемеҫҫӗ, нимӗнле ырӑ ӗҫ те тума пултараймаҫҫӗ.

### Тӗрӗс вӗрентӳпе епле пурӑнмаллине ӳкӗтлесси

2 Эсӗ вара тӗрӗс вӗрентӳпе килӗшӳллине кала:
2 ватӑсем сыхӑ, мӑнаҫлӑ тата таса шухӑшлӑ
пулччӑр; ӗненӳре, юратулӑхра, тӳсӗмлӗхре ҫирӗп
пулччӑр. 3 Карчӑксем ӗненекене килӗшӳллӗ пек
тумланччӑр; элеклемесӗр, сӑра-эрех ӑшне
путмасӑр пурӑнччӑр, ырра вӗрентчӗр. 4 Вӗсем
ҫамрӑк арӑмсене упӑшкипе ачи-пӑчине юратма,
5 таса шухӑшлӑ, ҫылӑха кӗмесӗр пурӑнма, килшӗн
тӑрӑшма, ырӑ пулма, упӑшкисене пӑхӑнса пурӑнма
вӗрентчӗр – ҫапла тусан Турӑ сӑмахӗ хур пулмӗ.
6 Яшсене те таса шухӑшлӑ пулма ӳкӗтле. 7 Ырӑ ӗҫӳпе
вӗсемшӗн тӗслӗх пул. Эсӗ ӳкӗтлени таса та танлӑ,
пӑсӑк мар пултӑр. 8 Сӑмаху сулмаклӑ та тиркеме ҫук
пултӑр, пире хирӗҫлекен пирӗн ҫинчен начар
калайманнипе намӑса юлтӑр. 9 Чурасене хӑйсен
хуҫисене пур енчен те пӑхӑнса, юраса, вӗсемпе
тавлашмасӑр пурӑнма ӳкӗтле. 10 Вӗсем ан
вӑрлаччӑр, пур енчен те шанчӑклӑ пулччӑр – ҫапла
туса хамӑра Ҫӑлакан Туррӑмӑр вӗрентӗвне татах
илем кӳччӗр.
11 Ӗнтӗ Туррӑн пур ҫынсене те ҫӑлакан ырӑлӑхӗ
ҫитрӗ. 12 Ҫав ырӑлӑх пире кунти пурӑнӑҫра Турӑсӑр
ӗҫсене тата ку тӗнче киленӗҫне пӑрахӑҫласа, таса
шухӑшлӑ та тӳрӗ, Турра хисеплесе пурӑнма
вӗрентет. 13 Пире ҫав ырӑлӑх шанчӑк ҫитес телейлӗ
куна – хамӑра Ҫӑлакан аслӑ Туррӑмӑр Иисус
Христос мухтавлӑ килес куна – кӗтме вӗрентет.
14 Пире усаллӑхран тӳлесе илес тесе, Хӑй валли
сӑвапласа тасатнӑ, тӑрӑшуллӑ, ырӑ тума пӗлекен,
уйрӑм халӑх пултарас тесе, Христос Хӑйне
пирӗншӗн вилӗме панӑ. 15 Ҫапла каласа ӳкӗтле,
пӗтӗм хӑватупа питле! Сан ҫине никам та ҫӳлтен ан
пӑхайтӑр!

### Ырӑ ӗҫсем тусах тӑрӑр

3 Ҫакна астутарсах тӑр: вӗсем пуҫлӑхсене,
влаҫсене итлесе, пӑхӑнса пурӑнччӑр, кирек
епле ырӑ ӗҫ тума та хатӗр пулччӑр. 2 Вӗсем пуринпе
те шӑкӑл-шӑкӑл калаҫчӑр, харкашса ан ҫӳреччӗр,
ҫемҫе кӑмӑллӑ пулса, хӑйсене пур ҫынпа та йӑваш
тыткалаччӑр. 3 Мӗншӗн тесен эпир хамӑр та тахҫан
айванччӗ, пӑхӑнмастӑмӑрччӗ, ҫӗтсе кайнӑччӗ;
ҫылӑхлӑ кӑмӑлпа тӗрлӗ киленӗҫ чурисемччӗ,
ҫилленсе-кӗвӗҫсе пурӑнаттӑмӑр, киревсӗрччӗ, пӗр-

пĕрне кураймастăмăр. 4 Анчах та Çăлаканăмăр,
Туррăмăр, ырăлăхĕ çитсен, Унăн этеме савакан
кăмăлĕ уçăлсан, 5 пире Вăл тӳрĕ ĕçĕмĕрсемшĕн
мар, Хăй ырăлăхлă пулнăран чĕрĕлӳ шывĕпе
тасатса, Святой Сывлăшпа çĕнетсе тăчĕ. 6 Пире,
Унăн ырăлăхĕпе тӳрре тухнăскерсене, хамăр шаннă
пекех, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе, Вăл Святой
Сывлăшне Иисус Христос урлă çителĕклех пачĕ.
8 Çак сăмахсем тĕрĕс. Турра ĕненекенсем ырă ĕç
тума ăнтăлччăр тесе, ман сана çак сăмахсене çине-
çинех калама ыйтассăм килет. Ырă ĕç туни этемшĕн
аван, усăллă. 9 Анчах та пушă тавлашусенчен
пăрăн, йăх-несĕл тымарĕсем çинчен сӳпĕлтетнĕ
çĕре, саккун пирки хĕрсе кайса калаçнă çĕре ан
хутшăн, мĕншĕн тесен ку усăсăр, харам ĕç кăна.
10 Пăсăк ĕненӳллĕ çынна вара пĕрре асăрхаттар,
тепре асăрхаттар, унтан пăрăнса ут. 11 Пĕлсех тăр:
унашкаллисем ăсне пăснипе, çылăха кĕнипе
хăйсене хăйсемех айăплă тунă ĕнтĕ.

### Хушнисем, салам янисем

12 Эпĕ сан патна Артемăна е Тихика ярсан, эсĕ ман
патăма Никополе хăвăртрах кил: эпĕ унта хĕл каçма
шут тытрăм. 13 Саккуна ăста пĕлекен Зинăна тата
Аполлоса çула ăсатнă чух, тархасшăн, вĕсене мĕн
кирлине йăлтах çителĕклĕ парса яма тăрăш. 14 Усси
пултăр тесен, хамăр çынсем те кулленхи пурăнăçра
ырă тума, пĕр-пĕрне пулăшма вĕренччĕр.
15 Манпа пĕрле пурăнакансем сана пурте салам
яраççĕ. Ĕненсе пире юратакансене пурне те салам
кала. Пурсăра та тивлет пултăр! Аминь.

# Филимон патне

### Саламлани

1 Чунӑма Иисус Христос тыткӑнланӑ Павелран
тата ӗненекен тӑванӑмӑр Тимофейран – савнӑ
Филимон тусӑмӑра, ӗҫри юлташӑмӑра; 2 тата савнӑ
тӑванӑмӑр Апфия йӑмӑка; тата кӗрешӳри
юлташӑмӑра Архипа; ҫавӑн пекех санӑн килӳнте
пуҫтарӑнакан ӗненекен ушкӑна. 3 Сире пурне те
Атте Туррӑмӑртан тата Иисус Христос Хуҫамӑртан
ырӑлӑхпа канӑҫлӑх пултӑр.

### Филимонӑн юратулӑхӗпе ӗненӗвӗ

4 Кӗллӗмсенче сана аса илмессерен эпӗ Туррӑма
яланах тав тӑватӑп, 5 мӗншӗн тесен эсӗ Иисус
Хуҫамӑра епле ӗненни ҫинчен, ӗненекенсене пурне
те юратни ҫинчен тӑтӑшах илтетӗп. 6 Пирӗнпе
пӗрле ӗненсе Иисус Христосри мӗн пур ырӑлӑха
санӑн хӑвӑр патӑртах хастаррӑн пӗлмелле
пултӑрччӗ тетӗп. 7 Санӑн юратулӑху пире пысӑк
савӑнӑҫ тата йӑпанӑҫ парать. Сана пула, тавах,
ӗненекенсем те чӗрисенче канӑҫлӑх тупрӗҫ.

### Онисимшӑн тархаслани

8 Христос ячӗпе манӑн сана мӗн тумаллине
хӑюллӑнах хушма ирӗкӗм пур. 9 Апла пулин те эпӗ
санран юратулӑхпа ыйтасшӑн. Сана такам
йӑлӑнмасть, эпӗ, ватӑ Павел, халӗ чунӑма Иисус
Христос тыткӑнланӑскер, ыйтатӑп. 10 Эпӗ ӗненӳри
ывӑлӑмшӑн, Онисимшӑн, тархаслас тетӗп. Кунта,
тӗрмере, эпӗ уншӑн чун-чӗм ашшӗ пулса тӑтӑм.
11 Ӗлӗкрех сана унран ним усси те пулас ҫукчӗ,
анчах халӗ вӑл иксӗмӗре те кирлӗ. Эпӗ ӑна сан
патна яратӑп. 12 Эсӗ ӑна чӗреҫӗм вырӑнне хурсах
хапӑл тусамччӗ . 13 Ман ӑна ярассӑмах килместчӗ.
Ырӑ Хыпар вӗрентнӗшӗн тӗрмере ларнӑ чухне вӑл
сан вырӑнна манӑн пулӑшаканӑм пултӑрччӗ тесе
шутлаттӑм. 14 Анчах та санпа килӗшсе татӑлмасӑр
нимӗн те тӑвас темерӗм. Ырӑ ӗҫе санӑн ҫын
хистенипе мар, кӑмӑл хушнипе тумалла пултӑрччӗ
терӗм. 15 Тен, вӑл санран вӑхӑтлӑха уйӑрӑлни эсӗ
ӑна ху патна ӗмӗрлӗхе илессе пӗлтерчӗ. 16 Ӗнтӗ тек
вӑл саншӑн чура мар, ҫывӑх ҫынну, савнӑ ӗненекен
тӑвану. Вӑл маншӑн хаклӑ ҫыннӑм пулчӗ, саншӑн
тата пахарах пулӗ. Эсӗ ӑна ҫынлӑхӗшӗн ҫеҫ мар,
Хуҫамӑр урлӑ тӑван пулнишӗн те килӗштерӗн-ха.
17 Ҫапла ӗнтӗ, эсӗ мана тус-юлташ тесе шутлатӑн
пулсан, ӑна мана йышӑннӑ пекех хапӑл ту. 18 Вӑл
сана мӗнпе те пулин кӳрентернӗ е парӑмлӑ пулсан,
вӑл мар, эпӗ парӑмлӑ тесе шутла. 19 Ҫакна хам
аллӑмпа ҫырсах ҫирӗплететӗп: ун парӑмне хамах
парса татӑп. Эсӗ ман умра пурӑнӑҫушӑн парӑмлӑ
пирки эпӗ шарламастӑп та. 20 Ӗнтӗ Хуҫа Турӑ ячӗпе
маншӑн ырӑ ӗҫ тусамччӗ, Хуҫамӑр урлӑ тӑван
пулса, чунӑма лӑплантарсамччӗ.
21 Эсӗ итлессе шанса ҫыратӑп. Эсӗ маншӑн
ыйтнинчен те ытларах тума пултарасса пӗлетӗп.
22 Тата ман валли пӳлӗм хатӗрле. Турӑ мана, сирӗн
кӗллӗре илтсе, сирӗн патӑра ҫавӑрса ҫитерессе
шанатӑп.

### Юлашкинчен салам яни

23 Сана Епафрас салам ярать. Христос Иисусшӑн
вӑл манпа пӗрле тӗрмере ларать. 24 Манӑн ӗҫри
юлташӑмсем Марк, Аристарх, Димас тата Лука сана
салам калаҫҫӗ. 25 Иисус Христос Хуҫамӑрӑн ырӑлӑхӗ
сирӗн чун-чӗмпе пултӑр. Аминь.

# Еврейсем патне

### Турӑ Хӑйӗн Ывӑлӗ урлӑ калаҫнӑ

1 Турӑ ӗлӗк-авал пирӗн мӑн асаттесемпе
пророксем урлӑ нумай хутчен тата тӗрлӗ
майлӑн калаҫнӑ. 2 Ҫак юлашки вӑхӑтсенче вара Вӑл
пирӗнпе Хӑйӗн Ывӑлӗ урлӑ калаҫнӑ. Вӑл Ывӑлне
пӗтӗм тӗнчене еткерлӗхе панӑ, Ывӑлӗ урлӑ ҫут
тӗнчене пултарнӑ. 3 Ывӑлӗ, Турӑ мухтавӗн ҫути тата
Турӑ несӗллӗхӗн сӑнарӗ пулса, ҫут тӗнчене Хӑйӗн
хӑватлӑ сӑмахӗпе тытса тӑрать. Ҫынсене
ҫылӑхӗсенчен сӑвапласа-тасатса Вӑл Ҫӳлти Аслин
престолӗн сылтӑм енне ларнӑ. 4 Хӑйне Турӑ панӑ
чаплӑ ят ангелсен ятӗнчен чаплӑрах пулнӑ пекех,
Вӑл Хӑй те ангелсенчен чаплӑрах пулса тӑчӗ.

### Турӑ Ывӑлӗ ангелсенчен аслӑрах

5 Чӑнах та, Турӑ Хӑйӗн ангелӗсенчен хӑшне, хӑҫан
ҫапла калани пур: «Эсӗ – Манӑн Ывӑлӑм, паянтан
Эпӗ – Санӑн Аҫу». Тата пӗр ангел ҫинчен те: «Эпӗ
Унӑн Ашшӗ пулӑп, Вӑл Манӑн Ывӑлӑм пулӗ», – тесе
каламан. 6 Хӑйӗн Малтанхи Ывӑлне ҫут тӗнчене
килтернӗ чухне Вӑл ҫапла каланӑ: «Турӑ ангелӗсем
пурте Ӑна пӑхӑнса пуҫҫапчӑр». 7 Ангелсем пирки
ҫапла каланӑ: «Эсӗ, Турӑ, ангелусене ҫил евӗр
тӑватӑн, тарҫусене те вутланакан ҫулӑм евӗр
тӑватӑн». 8 Ывӑлӗ пирки вара ҫапла каланӑ: «Эй,
Турӑҫӑм, Санӑн престолу ӗмӗрлӗх, Хӑвӑн
патшалӑхун тытӑмӗн палли – патша туйи –
тӗрӗслӗхлӗ. 9 Эсӗ тӗрӗслӗхе юрататӑн,
йӗркесӗрлӗхе кураймастӑн. Ҫавӑнпа та Сана,
Турӑҫӑм, Хӑвӑн Аҫу, Хӑвӑн Турру ыттисенчен
ытларах савӑнӑҫ ҫӑвӗ сӗрсе суйларӗ». 10 Тата ҫапла
каланӑ: «Эй, Хуҫамӑр! Эсӗ малтан ҫӗре пултарнӑ,
пӗлӗтсем те – Санӑн аллу ӗҫӗсем. 11 Вӗсем пӗтӗҫ,
Эсӗ яланах пулӑн. Вӗсем пурте тумтир пек кивелӗҫ.
12 Эсӗ вӗсене тумтир пек чӗркӗн те улӑштарӑн,
вӗсем улшӑнӗҫ. Эсӗ кӑна нихӑҫан улшӑнми, куну-
ҫулу та вӗҫленми». 13 Тата Турӑ Хӑйӗн ангелӗсенчен
хӑшне, хӑҫан ҫапла калани пур: «Эпӗ Санӑн
тӑшманусене уру айне тӑвиччен Эсӗ Манӑн сылтӑм
енче лар». 14 Ангелсем пурте ҫӑлӑнӑҫа еткерлӗхе
илекенсене пулӑшма янӑ сывлӑшсем кӑна мар-им
вара?

### Аслӑ ҫӑлӑнӑҫ

2 Ҫавӑнпа та пирӗн, Турӑ ҫулӗнчен пӑрӑнса каяс
мар тесен, хамӑра мӗн вӗрентнине асра
тытмалла. 2 Мӗншӗн тесен ангелсем урлӑ пӗлтернӗ
саккун ҫирӗп пулсан, ҫав саккунран иртсе айӑпа
кӗнишӗн тивӗҫлӗ тавӑру илмелле пулсан, 3 эпир ҫав
тери аслӑ ҫӑлӑнӑҫшӑн чуна парса тӑрӑшмасан пире
айӑплав пулмӗ-и? Ҫӑлӑнӑҫ хыпарне чӑн малтан
Хуҫамӑр ӳкӗтлесе вӗрентнӗ, Хӑйӗнчен илтекенсем
каласа пани пирӗн ӑшра ҫав хыпара тӗреклетнӗ.
4 Ҫӑлӑнӑҫ хыпарне ҫирӗплетмешкӗн Турӑ Хӑй те
паллӑсемпе хӑватсем, тӗрлӗ тӗлӗнмелле ӗҫсем
кӑтартнӑ, Святой Сывлӑшӑн парнисене илмешкӗн
те Унран ирӗк пулнӑ.

### Ҫӑлӑнӑҫ Ҫулпуҫӗ

5 Эпир каласа пӗлтерекен пулас ҫут тӗнчене Турӑ
ангелсене пӑхӑнса тӑмалла туман. 6 Ҫырнинче пӗр
тӗлте такам ҫапла ҫирӗплетсе калани пур:
«Мӗншӗн Эсӗ ҫынсемшӗн тӑрӑшатӑн? Мӗншӗн Эсӗ
этем ывӑлӗшӗн тӑрӑшатӑн? 7 Вӑхӑтлӑха Эсӗ ӑна
ангелсенчен кӗҫӗнрех турӑн та унтан ӑна мухтавлӑ,
чыслӑ пуҫ кӑшӑлӗ тӑхӑнтартрӑн, Ху аллупа
пултарнӑ япаласен хуҫи турӑн , 8 пӗтӗмпех унӑн
аллине патӑн». Пурне те ҫынна пӑхӑнтартӑн,
пӑхӑнманни нимскер те хӑвармарӑн. Хальлӗхе
вара эпир ҫынна пурте пӑхӑннине курмастпӑр-ха.
9 Анчах та вӑхӑтлӑха ангелсенчен кӗҫӗнрех пулнӑ
Иисус Хӑйӗн вилӗмӗ урлӑ мухтавлӑ, чыслӑ пуҫ
кӑшӑлӗ тӑхӑннине куратпӑр. Ҫапла вара, Турӑ
тивлечӗпе Вӑл пирӗншӗн кашниншӗн вилнӗ.
10 Мӗн пурри – Турӑшӑн, мӗн пурри – Турӑран.
Хӑйне ӗненекен ачисене мухтавлӑ тӑвакан Туррӑн
ҫынсене ҫӑлӑнӑҫ кӳрекен Ҫулпуҫне асап кӑтартса
асла кӑлармалла пулнӑ та. 11 Мӗншӗн тесен
Тасатаканӗн те, тасалаканӗсен те Ашшӗ пӗрре,
ҫавна пула вӗсене тӑвансем темешкӗн вӑтанмасӑр
Вӑл ҫапла калать: 12 «Санӑн ятна тӑванӑмсене
пӗлтерӗп, ӗненекен ушкӑнра Сана мухтаса юрлӑп».
13 Тата: «Эпӗ Ӑна шанса тӑрӑп», – тенӗ. Унтан тата:
«Акӑ Эпӗ тата Турӑ Мана панӑ ачамсем», – тенӗ.
14 Ҫавӑнпа та ачасем ӳтлӗ-юнлӑ пулнӑран, вӗсем
пек пулас тесе, Вӑл Хӑй те ӳтлӗ-юнлӑ пулса тӑнӑ.
Ҫакна Вӑл Хӑйӗн вилӗмӗпе шуйттанӑн, вилӗм
пуҫлӑхӗн, хӑватне пӗтерес тесе, 15 вилӗмрен
хӑранипе ӗмӗр тӑршшӗпех чуралӑхра
пурӑнакансене пурне те хӑтарас тесе тунӑ.
16 Паллах, Вӑл ангелсене мар, Авраам йӑхне
пулӑшмашкӑн килнӗ. 17 Турӑ умӗнче ҫынсен
ҫылӑхне каҫарттармашкӑн, хӗрхенӳллӗ те
шанчӑклӑ Аслӑ священник пулмашкӑн Унӑн пур
енчен те тӑванӗсем пекех пулмалла пулнӑ.

18 Мĕншĕн тесен Вăл Хăй, асаппа тĕрĕсленнĕскер,
халĕ асап куракансене пулăшма пултарать.

### Христос Моисейран аслăрах

3 Эй, сăваплă тăванăмăрсем, çӳлти ырăлăха пая
кĕрес çынсем, хамăр ĕненĕвĕмĕр апостолĕ,
Аслă священник Иисус Христос çинчен шухăшлăр-
ха. 2 Турă кил-çуртĕнче Моисей епле шанчăклă
пулнă, Вăл та Хăйне Аслă священника лартнă Турă
умĕнче шанчăклă. 3 Кил-çурт лартакан çурт-
йĕрĕнчен мĕн чухлĕ чаплăрах, Христос та
Моисейран çавăн чухлĕ чаплăрах. 4 Мĕншĕн тесен
кирек епле кил-çурта та кам та пулин пултарать,
пурне те пултараканĕ вара – Турă. 5 Моисейăн Турă
малашне мĕн пĕлтерессине каласа çирĕплетмелле
пулнă, вăл Турă кил-çуртĕнче пур енчен те
шанчăклă тарçă пулнă. 6 Христос вара Турă кил-
çуртĕнче – шанчăклă Ывăлĕ. Пирĕн кăмăл çирĕп,
эпир шанчăк пуррипе мухтанатпăр. Енчен те çав
пахалăхсене вĕçне çитиччен упраса хăварайсан,
эпир Унăн кил-çурчĕ пулăпăр.

### Турă халăхĕн канăçлăхĕ

7 Çавăнпа та Святой Сывлăш калашле: «Эсир паян
Унăн сассине илтес пулсан, 8 пуш хирте Мана
тĕрĕсленĕ кун ӳпкеленĕ чухнехи пек чĕрĕрсене ан
хытарăр. 9 Унта, Эпĕ мĕн тунине хĕрĕх çул курса
тăнă çинчех, Мана мăн асласăрсем тĕрĕслерĕç.
10 Çавăнпа Эпĕ вăл ăрăва çилленсе çапла каларăм:
кусем шухăш-кăмăлĕпе яланах аташаççĕ, вĕсем
Манăн çул-йĕрĕме пĕлес темерĕç. 11 Çавăнпа Эпĕ,
вĕсем Манăн канăçлăхăма ан кĕрейччĕр тесе,
çиллĕмпе тупа турăм».
12 Тăванăмăрсем! Сирĕнтен хăшĕ те пулин усал та
ултавлă чĕреллĕ пуласран, чĕрĕ Турăран
пăрăнасран асăрханăр. 13 Сирĕнтен хăшĕ те пулин
çылăх илĕртнипе чунне ан хытартăр тесе, „паян“
теме май пур чухне пĕр-пĕрне куллен ӳкĕтлĕр.
14 Малтанхи çирĕп ĕненĕве вĕçне çитиччен
упраса хăварайсан, эпир Христоспа пĕр пая
кĕреетпĕр. 15 Çырнинче калашле: «Эсир паян Унăн
сассине илтес пулсан, ӳпкелешнĕ чухнехи пек
чĕрĕрсене ан хытарăр». 16 Мĕншĕн тесен çав сасса
илтсессĕн Моисейпа Египетран тухнисенчен хăшĕ-
пĕрисем – пурте мар – ӳпкелешме пуçланă. 17 Хĕрĕх
çула яхăн Турă кама çилĕ тытса тăнă-ха? Çылăха
кĕрсе шăмми-шаккисене пуш хиртех хăварнисене
мар-и вара? 18 Вĕсем Манăн канăçлăхăма ан
кĕрейччĕр тесе, Хăйне итлеменнисене хирĕç тупа
туман-им вара Вăл? 19 Куратпăр ĕнтĕ: хăйсен
ĕненменлĕхне пула вĕсем чăнах та канăçлăха
кĕреймен.

4 Çапла вара асăрханар: Турă Хăйĕн канăçлăхне
кĕртме сăмах пани вăйра тăнă чухне сирĕнтен
хăшĕ те пулин унта кĕмешкĕн кая ан юлтăрччĕ.
2 Мĕншĕн тесен вĕсене хыпарланă пекех, пире те
канăçлăха кĕме хыпар тунă. Анчах та вĕсем илтнĕ
сăмах, итлекенсен ĕненĕвĕпе пĕр пулаймасăр, усса
кайман. 3 Эпир вара, ĕненнисем, Туррăн
канăçлăхне кĕреетпĕр. Турă Хăйĕн ĕçне тĕнчене
пултарсанах вĕçленĕ пулин те, çапла каланă: «Эпĕ,
вĕсем Манăн канăçлăхăма ан кĕрейччĕр тесе,
çиллĕмпе тупа турăм». 4 Мĕншĕн тесен Çырнинче
пĕр тĕлте çапла калани пур: «Çиччĕмĕш кунне вара
Турă Хăйĕн мĕн пур ĕçĕсенчен каннă». 5 Ку тĕлте
вара: «Манăн канăçлăхăма ан кĕрейччĕр», – тенĕ.
6 Пĕрисем, Турă канăçлăхне кĕме хăйсене малтанах
хыпарланă пулин те, пăхăнман пирки унта
кĕреймен. Унта теприсене кĕмелле тунă, вĕсем
валли 7 Турă темле „паян“ текен кун палăртать.
Чылай вăхăт иртсен Турă ун çинчен, маларах пĕрре
каланă пек, Давид сăмахĕсемпе калать: «Паян Унăн
сассине илтес пулсан, эсир чĕрĕрсене ан хытарăр».
8 Енчен те Иисус Навин вĕсене канăçлăх парайнă
пулсан, Турă урăх канăçлăх кунĕ çинчен каламан
пулĕччĕ. 9 Эппин Турă халăхĕн канăçлăха кĕресси
малта-ха. 10 Мĕншĕн тесен Туррăн канăçлăхне кĕнĕ
çын, Турă Хăйĕн ĕçĕсенчен каннă пекех, ĕçĕсенчен
канăçĕ. 11 Çапла вара, Туррăн канăçлăхне кĕресчĕ
тесе тăрăшар. Итлеменнисенчен тĕслĕх илсе никам
та унта кĕреймесĕр ан юлтăрччĕ. 12 Мĕншĕн тесен
Турă сăмахĕ чĕрĕлĕхлĕ, ĕçлĕхлĕ. Вăл ик енĕ те
çивĕч хĕçрен те çивĕчрех. Вăл пирĕн ăша çав тери
тарăн – чун-чĕрепе шăм-шак таранах – витерет.
Турă сăмахĕ чĕрери ĕмĕт-шухăша та хакласа уйăрса
илет. 13 Турă пултарни Турă умĕнче пытарăнаймĕ;
Унăн куçĕсем пурне те витĕр курса тăраççĕ, Унăн
умĕнче пирĕн явап тытмалла.

### Иисус – Аслă священник

14 Çапла вара, пирĕн тӳпене çĕкленнĕ чаплăран та
чаплă Аслă священник пур, Вăл Турă Ывăлĕ Иисус,
çавăнпа ĕненĕвĕмĕре çирĕп тытса пурăнар.
15 Пирĕн Аслă священник, эпир халсăррине пĕлсе,
хута кĕрет. Вăл, çылăхсăр пуçне, эпир мĕн тӳснине
йăлтах тӳснĕ. 16 Эппин, хамăра тĕрĕслес вăхăтра
пулăшма ырăлăхпа тивлет илес тесе, чаплăран та
чаплă престол патне çирĕп кăмăллăн пырар.

5 Кирек епле аслă священника та çынсен
çылăхĕсемшĕн кĕлтума, Турра ахаль
парнесемпе пуснă парнесем кӳме çынсем
хушшинченех суйласа лартаççĕ. 2 Пĕлменнипе е
аташнипе çылăха кĕнисене вăл хĕрхенме
пултарать, мĕншĕн тесен хăй те çитменлĕхсĕр мар.
3 Çавăнпа та унăн хăйĕн çылăхĕсемшĕн те, çынсен
çылăхĕсемшĕн те Турра парне кӳрсе тăмалла.
4 Никам та хăй тĕллĕн аслă священника
лараймасть. Çак тивĕçе пурнăçлама ăна, Аарона
чĕнсе илнĕ пекех, Турă чĕнсе илет. 5 Христос та аслă
священник тивĕçне Хăй тĕллĕн илмен. Турă Ăна:
«Эсĕ Манăн Ывăлăм, паян Эпĕ Санăн Аçу пулса
тăтăм», – тесе çак тивĕçе панă. 6 Тепĕр тĕлте Турă
çапла калать: «Эсĕ, Мелхиседек евĕрлех, ĕмĕрлĕх
священник». 7 Çĕр çинче ӳтленсе пурăннă чухне
Иисус Хăйне вилĕмрен çăлма Пултаракана

ĕçĕклесе, куççулĕпе йĕрсе кĕлтунă, йăлăннă. Вăл
Турра хисепленĕрен Турă Ăна илтнĕ. 8 Вăл, Турă
Ывăлĕ пулин те, асап витĕр тухса, пăхăнмашкăн
вĕреннĕ. 9 Вилсе чĕрĕлсессĕн Вăл Хăйне
итлекенсемшĕн пуриншĕн те ĕмĕрлĕх çăлăнăç
çăлкуçĕ пулса тăнă. 10 Вара Турă Ăна Мелхиседек
евĕрлех Аслă священника лартнă.

### Турăран пăрăнасран асăрхаттарни

11 Кун пирки калаçмалли нумайччĕ, анчах та сире,
итлеменскерсене, тăнлантарма йывăр. 12 Сирĕн
хăвăрăн вĕрентекен пулмашкăн вăхăт ĕнтĕ, анчах
та сире Турă сăмахне каллех пуçламăшĕнчен
вĕрентмелле, сире хытă çимĕç мар, сĕт кирлĕ.
13 Сĕтпе тăранса пурăнакан чăнлăх сăмахне
пĕлеймĕ, мĕншĕн тесен вăл ача-ха. 14 Хытă çимĕç
вара çитĕннисем валли, мĕншĕн тесен вĕсем
пурăнăç курнă, ырăпа усала уйăрма пĕлеççĕ.

6 Çавăнпа та Христос вĕрентĕвĕн
пуçламăшĕнчен тулли пĕлӳ патне хăвăртрах
куçар. Никĕсри ансат чăнлăхсем çинчен: çылăхлă
ĕçсем тума пăрахасси çинчен, Турра ĕненесси
çинчен, тĕне кĕрессипе алă хурасси çинчен,
вилнисем чĕрĕлсе тăрасси çинчен, ĕмĕрлĕх суд
çинчен тăтăшах калаçар мар, Вăл вĕрентнине
тĕплĕнрех пĕлсе çитме васкар. 3 Турă ирĕк парсан
эпир çапла тăвăпăр та. 4 Çакнашкал çынсем те пур:
вĕсем чăн çутта тухнă, çӳлти сăвапа активнĕ,
Святой Сывлăш илнĕ. Çак çынсем Туррăн ырă
сăмахне илтнĕ, лери пурăнăç вăй-хăватне те курнă.
Çаксем пĕтĕмпех ырăлăх пулнине пĕлсе тăнă
çинчех вĕсем Турăран пăрăннă. Вĕсене ĕнтĕ
ӳкĕнтерсе каялла тавăрма çук, мĕншĕн тесен вĕсем
Турă Ывăлне тепĕр хут пăталаççĕ, мăшкăл тăваççĕ.
7 Тăтăш çуса тăракан çумăра сăхса, ĕçлекене тыр-
пул ӳстерсе паракан çĕр Турăран пиллĕх илет.
8 Пиçенпеле хыт-хура ӳстерекен çĕр вара ниме
юрăхсăр, ылхана тивĕç. Вăл вутра çунса пĕтĕ.
9 Çапах та, савнă тăвансем, эпир çак сăмахсене
каларăмăр пулин те, сирĕн лару-тăру лайăхрах
тесшĕн. Эсир çăлăнăç çулĕ çинче тăнине пĕлетпĕр.
10 Турă вăл тĕрĕслĕхлĕ, çавăнпа сирĕн ĕçĕрсене те,
Хăйĕн сăваплă халăхне Унăн ячĕпе пулăшса
юратулăхăра кăтартнине те манмасть. 11 Эпир
сирĕнтен кашниех тулли шанчăклă пулмашкăн
вĕçне çитиччен çавнашкал тăрăштăр тетпĕр;
12 Сирĕнтен пĕри те ан наянлантăр, хăйсен
ĕненĕвĕпе тӳсĕмлĕхне пула шантарнă еткере илме
тивĕçлисем пек пултăр тетпĕр.

### Турă сăмах парса шантарни

13 Турă, Авраама сăмах панă чухне, Хăйĕнчен
асăраххи нимĕн те пулманран Хăйĕнпе тупа тунă.
14 Вăл çапла каланă: «Эпĕ сана пиллемеллипех
пиллĕп, санăн йышна хунанăçемĕн хунамалла
тăвăп». 15 Çапла майпа, çирĕп тӳсĕмлĕхне пула
Авраам хăйне шантарнине тивĕç пулнă. 16 Çынсем
яланах хăйсенчен асăраххипе тупа тăваççĕ, сăмах
панине тупа туса çирĕплетсен, кирек епле тавлашу
та вĕçленет. 17 Çавăнпа Турă та, еткер илме
тивĕçлисене Хăйĕн ирĕкне улăштарас çуккине
кăтартса, Хăй сăмах панине тупапа çирĕплетнĕ.
18 Икĕ япалара – сăмах панинче тата тупа тунинче –
Турă суйма пултараймасть. Çакна Вăл пирĕн, Хăйĕн
хӳттине пынисен, умри шанчăк çирĕп пултăр тесе
тунă. 19 Çав шанчăк чунăмăрсемшĕн тĕрек евĕр; вăл
чаршав хыçĕнчи Тасаран таса вырăна та кĕрет.
20 Унта пирĕншĕн, Мелхиседек евĕр ĕмĕрлĕх Аслă
священник пулса, пирĕн умран Иисус кĕнĕ.

### Аслă священник Мелхиседек

7 Мелхиседек Салим патши тата Çӳлти Туррăн
священникĕ пулнă. Вăл Авраама патшасене
çĕнтерсе тавăрăннă чухне кĕтсе илнĕ те пилленĕ.
2 Авраам вара Мелхиседека вăрçăра çĕнсе илнĕ
пурлăхăн вуннăмĕш пайне панă. Унăн ятне икĕ
тĕрлĕ ăнлантарма пулать: пĕрремĕшĕнчен,
Мелхиседек тени „чăнлăх патши“ тени пулать;
иккĕмĕшĕнчен, Салим патши тени „канăçлăх
патши“ тени пулать. 3 Унăн ашшĕ-амăшне те, мăн
аслашшĕсене те никам та пĕлмест, унăн пурăнăçĕн
пуçламăшĕпе вĕçĕ те паллă мар. Турă Ывăлĕ
евĕрлех, вăл ĕмĕрлĕх священник пулса тăрать.
4 Хăвăрах куратăр: пирĕн йăх тĕпĕ Авраам хăй те
ăна вăрçăра туртса илнĕ чи лайăх пурлăхăн
вуннăмĕш пайне панă пулсан, еплерех чаплă пулнă
вăл! 5 Саккунпа килĕшӳллĕн, священника тухнă
Левий тăхăмĕсен халăхран пурлăхăн вуннăмĕш
пайне пуçтармалла. Çав вуннăмĕш пая вĕсем
Авраам урлă тăван лекекен çынсенченех
пуçтараççĕ. 6 Мелхиседек вара, Левий йăхĕнчен
мар пулин те, Турă сăмах парса шантарнă
Авраамран пурлăхăн вуннăмĕш пайне илнĕ те ăна
пилленĕ. 7 Паллă ĕнтĕ, пил паракан пил илекентен
аслăрах. 8 Пурлăхăн вуннăмĕш пайне кунта
вилĕмлĕ çынсемех пуçтараççĕ, унти Мелхиседек
пирки вара Çырнинче вилнĕ тесе çирĕплетмен.
9 Вуннăмĕш пай пуçтаракан Левий хăй те Авраам
урлă Мелхиседека пурлăхĕн вуннăмĕш пайне панă
теме пулать. 10 Мĕншĕн тесен Мелхиседек Авраама
тĕл пулнă чухне Левий çуралман-ха, вăл Авраам
тăхăмĕнче çураласси кăна пулнă.
11 Енчен те Левий йăхĕнчен тухнă священниксем
халăха чи паха шая çитерейсен (халăха ун чухне
панă саккун шăпах левитлăх çинче никĕсленсе
тăрать), Аарон евĕрлĕ мар, Мелхиседек евĕрлĕ
тепĕр Аслă священник мĕн тума кирлĕччĕ?
12 Священника тухасси улшăнни саккуна та
улăштармаллине пĕлтерет. 13 Кам пирки
калаçатпăр, Çавă пачах урăх йăх-несĕлтен вĕт-ха,
вăл йăхран никам та нихăçан та парне вырăнĕ
умĕнче Турăшăн ĕçлесе тăман. 14 Пирĕн Хуçамăр,
паллă ĕнтĕ, Иуда йăхĕнчен тухнă. Вăл йăхри
çынсем священника ларасси пирки вара Моисей
пĕр сăмах та каламан. 15 Мелхиседек евĕрлĕ тепĕр

Священник килни çакна уççăнах кăтартса парать.
16 Вăл этемле йăх-несĕл йĕркипе мар, вилĕмсĕр
пурăнăç хăвачĕпе Священника ларнă. 17 Çырнинче
çапла пĕлтернĕ: «Эсĕ – Мелхиседек евĕрлĕ ĕмĕрлĕх
священник». 18 Малтанхи йĕркене вара хавшак та
усăсăр пулнăран улăштарнă. 19 Моисей саккунĕ
ниме те чи паха шая çитерейменпирки пире çĕнĕ
шанчăк панă та ĕнтĕ. Çав шанчăка пула эпир Турă
патне çывхаратпăр.
20 Иисуса Аслă священника лартнă чухне Турă
тупа тунă. 21 Ыттисене пĕрне те священника тупа
туса лартман. Куна вара Турă тупа туса çапла
каланă: «Тупа тунă Хуçа Турă Хăй сăмахне
улăштармĕ: Эсĕ – Мелхиседек евĕрлĕ ĕмĕрлĕх
Священник». 22 Ку вăл лайăхрах халал çирĕплĕхне
шантараканĕ Иисус пулнине пĕлтерет. 23 Ытти
священниксем нумаййăн пулнă, мĕншĕн тесен
пĕрисем вилсен вĕсем вырăнне теприсем ларнă.
24 Анчах та Иисус ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, ĕмĕр-ĕмĕр
Священник пулĕ. 25 Çавăнпа та Вăл Хăйĕн урлă Турă
патне пыракансене яланах çăлĕ, Хăй ĕмĕр-ĕмĕр
пурăннăран вĕсен хутне кĕрсех тăрĕ. 26 Пирĕн Аслă
священник çавнашкал пулмалла та: таса, çылăхсăр,
çитменлĕхсĕр. Ăна, çылăхлисенчен уйăрса, тӳперен
те çӳлерех çĕкленĕ. 27 Унăн, ытти священниксем
евĕр, куллен чи малтан – хăйĕн çылăхĕшĕн, унтан
халăх çылăхĕшĕн Турра парне кӳмелле мар.
Мĕншĕн тесен Вăл пĕрре Хăйне Хăй парнене кӳнĕ.
28 Саккун тăрăх аслă священника лартнă çынсем –
çитменлĕхлĕ ахаль çынсемех. Саккун хыççăнхи
тупа сăмахĕ вара Аслă священника ĕмĕрлĕх паха
Турă Ывăлне лартнă.

## Çĕнĕ тата лайăхрах Халалăн Аслă священникĕ

8 Сăмахăмăрăн тĕшши çакă пулать: пирĕн Аслă
священник пур, Вăл Çӳлти Турă престолĕн
сылтăм енне ларнă; 2 Вăл чăн-чăн кĕлĕ чатăрĕн
Тасаран таса вырăнĕнче Турăшăн ĕçлесе тăрать;
çав чатăра этем мар, Хуçа Турă Хăй лартнă. 3 Кирек
епле аслă священника та ахаль парнесене тата
пуснă парнесене Турра кӳме лартаççĕ. Çавăнпа та
пирĕн Священникăн та Турра кӳрес парни
пулмалла. 4 Вăл çĕр çинчех юлнă пулсан,
священник та пулмĕччĕ. Мĕншĕн тесен кунта
саккунпа килĕшӳллĕн Турра парне кӳрекен
священниксем пур. 5 Вĕсем çĕр çинче сăваплă
вырăнта Турăшăн ĕçлесе тăраççĕ. Анчах та çĕр
çинчи сăваплă вырăн тӳперин мĕлки тата ĕлки
кăна. Мĕншĕн тесессĕн чатăр лартма пуçласан Турă
Моисея çапла асăрхаттарнă: «Асту, – тенĕ Вăл, –
пĕтĕмпех хăвна ту çинче кăтартнă ĕлке евĕрлĕ ту».
6 Анчах та Иисуса шанса панă ĕç ытти
священниксем тăвакан ĕçрен тем тери пахарах.
Çавнашкалах Турă этеме Ун урлă панă çĕнĕ халал
та малтанхинчен пахарах. Мĕншĕн тесен çĕнĕ
халал Турă лайăхраххине шантарни çинче
никĕсленсе тăрать.
7 Енчен те малтанхи халалĕ пĕр çитменлĕхсĕр
пулсан, çĕнĕ халал парас та çукчĕ. 8 Çавăнпа та
вĕсене ӳпкелесе пророк çапла калать: «Эпĕ
Израиль çыннисене, Иуда çыннисене çĕнĕ халал
парас кунсем çывхараççĕ, – тет Хуçа Турă. 9 – Ку
халал вĕсен мăн аслашшĕсене алăран çавăтса
Египетран илсе тухнă чухне панă халал пек пулмĕ.
Мĕншĕн тесен вĕсем Манăн халала пăхăнса
пурăнас темерĕç, çавăнпа Эпĕ вĕсенчен пăрăнтăм,
– тет Хуçа Турă. 10 – Çав кунсем иртсен Эпĕ Израиль
çыннисене халал парăп, – тет Хуçа Турă. – Ун чухне
Хамăн саккунсене вĕсен ăс-пуçне хывăп, чĕри çине
çырса хурăп. Эпĕ вĕсен Турри пулăп, вĕсем Манăн
халăхăм пулĕç. 11 Мана пурте, кĕçĕннинчен пуçласа
чи асли таранах, пĕлнĕ пирки ун чухне никам та
пĕлĕшĕсене, тăванĕсене: „Хуçа Турра пĕл“, – тесе
каламĕ. 12 Мĕншĕн тесен Эпĕ вĕсен тĕрĕсмарлăхне
хĕрхенсе каçарăп, çылăхĕсемпе йĕркесĕрлĕхне те
аса илмĕп». 13 Çак халала „çĕнĕ“ тесе, Вăл малтанхи
кивелнине палăртнă: кивелни вара усăсăра тухса
часах пĕтмелле.

## Турăшăн ĕçлесе тăрасси

9 Малтанхи халалăн та Турăшăн ĕçлесе тăмалли
йăли-йĕркисем тата çĕр çинчи сăваплă вырăнĕ
пулнă. 2 Кĕлĕ чатăрĕ туса лартнă, унăн малти
пӳлĕмĕнче çутаткăç, сĕтел тата Турă умне хунă
çăкăрсем пулнă. Малти пӳлĕме „Таси“ тенĕ.
3 Иккĕмĕш чаршав хыçĕнче „Тасаран таси“ текен
пӳлĕм пулнă. 4 Унта ылтăнран тунă тĕтĕрмелли
парне вырăнĕ тата йĕри-тавра ылтăнланă халал
арчи пулнă. Çав арчара маннă тултарнă ылтăн
савăт, Ааронăн çулçă кăларнă туйи тата халал
сăмахĕсем çырнă чул хăмасем пулнă. 5 Арча
хупăлчи çинче мухтавлăх херувимĕсен кĕлеткисем
пулнă, çуначĕсемпе вĕсем „çылăх каçарттармалли“
текен вырăна хупласа тăнă. Вăхăта перекетлесе
ытти япаласем çинче тĕплĕн чарăнса тăмăпăр.
6 Çакнашкал йĕркеленĕ кĕлĕ чатăрĕн малти
пӳлĕмне Турăшăн ĕçлесе тăмашкăн священниксем
куллен кĕреççĕ. 7 Иккĕмĕш пӳлĕмне вара пĕртен-
пĕр аслă священникăн çулталăкра пĕрре кăна кĕме
юрать. Вăл унта, парне выльăхĕн юнне сирпĕтсе,
хăйĕн çылăхĕсемшĕн тата халăхăн пĕлмесĕр тунă
çылăхĕсемшĕн Турăран каçару ыйтать. 8 Кĕлĕ
чатăрне çапла йĕркеленипе Святой Сывлăш çакна
кăтартса парать: малти пӳлĕмĕ пур чухне Тасаран
таса текен пӳлĕм уçă мар-ха. 9 Çак тĕслĕхре хальхи
вăхăт та сăнарланнă: нимĕнле ахаль парне те,
нимĕнле пусса панă парне те Турра пуççапаканăн
чун-чĕрине аталантарса çитереймест. 10 Тĕрлĕ
парне таврашĕ ĕçсе çиес, çăвас йăлана туса
пымаллине кăна палăртать. Ӳт-пӳпе кăна çыхăннă
çак йăла-йĕркене Турă çынсене çĕнĕ йĕркеччен
кăна тытса пымалла тунă.
11 Пире пулас ырăлăха паракан Аслă священник
Христос вара этем аллипе туман, чи паха кĕлĕ
чатăрĕ витĕр Тасаран таса вырăна кĕнĕ. Вăл унта

качака е пăру юнне илсе кĕмен, Хăйĕн Юнне парса
пĕрре кĕнĕ. Ĕмĕрлĕх çăлăнăçа Христос пирĕн валли
Хăйĕн Юнĕпе тӳлесе илнĕ. 13 Енчен те качакапа
пăру юнне, тына пăру кĕлне сирпĕтсе
ирсĕрленнисене тасатма пулать пулсан, 14 Христос
Юнĕ пире мĕн тери хăватлăрах тасатма пултарĕ!
Вăл Святой Сывлăш хăвачĕпе Хăйне таса
парнелĕхе Турра панă. Çакна Вăл, пирĕн
чунăмăрсене вилĕмле ĕçсенчен тасатса, чĕрĕ те
чăн Турăшăн ĕçлесе тăччăр тесе тунă.
15 Çавăнпа та Турă этеме панă çĕнĕ халал Ун урлă
пулнă. Христос пире малтанхи халал саманинче
тунă çылăхсемшĕн Хăйĕн вилĕмĕпе тӳлесе илнĕ,
çапла майпа Турă шантарнă ĕмĕрлĕх еткере илме
тивĕçлисем Турă пама пулнине илччĕр тенĕ.
16 Халалĕ пур пулсан, халаллаканĕ вилнине
çирĕплетмелле. 17 Мĕншĕн тесен халал сăмахĕ
халаллаканĕ вилсен çеç вăя кĕрет, халал параканĕ
чĕрĕ чухне вăл вăйра мар. 18 Çавăнпа та ĕнтĕ
малтанхи халала та юнпа çирĕплетнĕ. 19 Моисей,
мĕн пур халăха саккунри пĕтĕм пил-хушусене
пĕлтерсе, пăрупа качака юнĕ, шыв, хĕретнĕ çăм
тата иссоп туратне илнĕ те халал кĕнеки çине,
халăх çине сирпĕтнĕ. 20 Сирпĕтнĕ чухне вăл çапла
каланă: «Çак юн – Турă пире пăхăнса пурăнма
хушнă халала çирĕплетекен юн». 21 Унтан вăл кĕлĕ
чатăрĕ çине те, Турăшăн ĕçлесе тăнă чух
тыткалакан пур япаласем çине те юн сирпĕтнĕ.
22 Саккунпа килĕшӳллĕн, пурне те тенĕ пекех юнпа
тасатмалла, юн тăкмасăр каçару та пулмасть.

### Христос Хăйне парнелĕхе кӳни çылăхран хăтарать

23 Эппин тӳперин çĕр çинчи ĕлкисене çапла
майпа тасатмалла, анчах та тӳперине ку
парнесенчен те лайăхраххипе кăна тасатма пулать.
24 Христос этем аллипе тунă çĕр çинчи сăваплă
вырăна кĕмен, ку вырăн – тӳперин ĕлки кăна.
Пирĕншĕн Турă умне тăмашкăн Вăл тӳпене
çĕкленнĕ. 25 Аслă священник юн илет те кашни
çулах Тасаран таса вырăна парне кӳме кĕрет.
Христос вара Хăйĕн пурăнăçне нумай хутчен
памасть. 26 Апла мар пулсан, тĕнчене
пултарнăранпа Унăн нумай-нумай хутчен
асапланмаллаччĕ. Вăл вара тĕнче пĕтмĕшĕнче,
Хăйне Хăй Турра пĕр хут парнелĕхе кӳрсе, çылăха
пĕтермешкĕн килнĕ. 27 Этеме пĕрре кăна вилме
пӳрнĕ, кайран унăн Суд умне тăмалла.
28 Çавнашкалах Христос та, нумай çыннăн çылăхне
илсе каяс тесе, Хăйне пĕрре Турра парнелĕхе кӳнĕ.
Иккĕмĕш хут килнĕ чухне Вăл пире çылăхран
хăтарма мар, Хăйне кĕтекенсене çăлас тесе килĕ.
10 Саккун паракан ырăлăх – пулас чăн-чăн
ырăлăхсен мĕлки кăна. Çулсерен тăтăшах
пĕрешкел парнепе Турă патне пыракансене вăл
нихăçан та чи паха шая çитереймест. 2 Ахальлĕн
çынсем парне кӳме пăрахĕччĕç, мĕншĕн тесен
парне кӳрекенсем, пĕрре çылăхран
тасалнăскерсем, хăйсем çылăхлине пĕлми
пулĕччĕç. 3 Çуллен Турра кӳрекен парне вара çылăх
çинчен астутарсах тăрать. 4 Мĕншĕн тесен пăрупа
качака юнĕ çылăха пĕтерме пултараймасть.
5 Çавăнпа та Христос, тĕнчене килсе, çапла
калать: «Ахаль парне те, пусса панă парне те Сана
кирлĕ пулмарĕ, çавăнпа Эсĕ Мана ӳт-пӳллĕ турăн.
6 Пĕтĕмĕшпе çунтарнă парне те, çылăхшăн пусса
панă парне те Сана юрăхлă пулмарĕ. 7 „Турăçăм, акă
Эпĕ! – терĕм вара Эпĕ. – Кĕнекере Ман çинчен
çырнă пекех, Эпĕ Санăн ирĕкне пурнăçламашкăн
килтĕм“». 8 Саккунпа кӳрекен парнесенчен:
«ахальли те, пусса пани те, пĕтĕмĕшпе çунтарса
пани те, çылăхшăн кӳни те Сана юрăхлă мар», –
тенĕ Вăл малтан. 9 «Эй, Турăçăм, акă Эпĕ, Эпĕ Санăн
ирĕкне пурнăçламашкăн килтĕм», – тенĕ Вăл
кайран. Çапла майпа кайран каланине
çирĕплетмешкĕн малтан каланине пăрахăçланă.
10 Христос Хăйĕн ӳтне Турă ирĕкĕпе пĕрре тата
яланлăха парнелĕхе кӳнипе эпир тасалнă.
11 Кашни священникăх кунсерен Турăшăн ĕçлесе
тăрать, пĕрешкел парнесемех нумай хутчен Турра
кӳрет, анчах вăл парнесем çылăха нихăçан та
пĕтерейменçĕ. 12 Христос вара, пирĕн çылăхсемшĕн
пĕрре парне кӳрсе, Туррăн сылтăм енне ĕмĕрлĕхех
ларнă. 13 Унтан Вăл Хăйĕн тăшманĕсене ури айне
тăвиччен кĕтнĕ. 14 Мĕншĕн тесен Вăл пĕрре парне
кӳрсех Хăй сăвапласа тасатнисене яланлăхах чи
паха шая çитернĕ. 15 Ун çинчен Святой Сывлăш та
çирĕплетсе пĕлтерет. Çырнинче çапла каланă:
16 «Çав кунсем иртсен, – тет Хуçа Турă, – Эпĕ вĕсене
çак халала парăп, Хамăн саккуна вĕсен чĕрисене
хывăп, ăс-пуçне çырса хурăп». 17 «Вĕсен
çылăхĕсемпе йĕркесĕрлĕхне те аса илмĕп», – тет
Турă. 18 Эппин, çылăха каçарнă пулсан, çылăхшăн
парне кӳмелле мар.

### Чĕнсе тата асăрхаттарса калани

19 Çапла вара, тăванăмăрсем, Иисус Христос Юнне
пула эпир Тасаран таса вырăна çĕнĕ те чĕрĕлĕхлĕ
çулпа кĕме хăятпăр. 20 Çав çула Вăл пире чаршав
урлă, урăхла каласан, Хăйĕн ӳчĕ урлă çĕнĕрен уçса
панă. 21 Чаплă священникăмăра Турă кил-çуртне
пăхса тăмашкăн лартнă. 22 Эппин Турă патне таса
чунпа, тулли ĕненӳпе, çылăхлă чĕремĕрсене
сăваплатса-сирпĕтсе, ӳт-пĕве таса шывпа çуса
кĕрер. 23 Хамăр ĕненекен шанчăка иккĕленмесĕр
чунтан парăнар, мĕншĕн тесен Шантараканĕ Хăйĕн
сăмахне яланах тытать. 24 Пĕр-пĕрин çинчен
шухăшлар, пĕр-пĕрне юратма, ырă ĕçсем тума
хавхалантарар. 25 Хăшĕ-пĕрисем хăнăхса кайнă пек,
хамăр пухусене çӳремесĕр тăрар мар. Çав Кун
çывхарнине пĕлсе пĕр-пĕрне вăйлăрах ӳкĕтлер.
26 Енчен те эпир чăнлăха пĕлнĕ хыççăн та хамăр
ирĕкпех çылăха кĕретпĕр пулсан, хамăр
çылăхсемшĕн парне кӳме пирĕн урăх нимĕн те
тăрса юлмасть. 27 Вара пирĕн хăраса суда кĕтмелли
тата Турра хирĕççисене тĕп тăвасла хаяр вута
кĕтмелли çеç юлать. 28 Кам та пулин Моисей

саккунне пăснине икĕ е виçĕ çын кăтартса парсан,
пăсаканнине вĕлермеллех айăплаççĕ. 29 Апла
пулсан, хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха: Турă Ывăлне
ним вырăнне хумасăр, халала çирĕплетсе хăйне
тасатнă Юна сăваплăх вырăнне хуман, ырăлăхлă
Турă Сывлăшне хурлакан çынна епле вăйлăрах
айăплав пулĕ! 30 Çак сăмахсене Кам каланине
пĕлетпĕр-çке-ха: «„Манра – тавăру, Эпĕ тавăрса
парăп“, – тет Хуçа Турă». Тата Вăл çапла каланă:
«Хуçа Турă Хăй халăхне суд тăвĕ». 31 Чĕрĕ Турă
аллине лекесси епле хăрушă!
32 Иртнĕ кунсене, ĕненсе çутта тухнă хыççăн
хăрушă асап тӳссе паттăрлăх кăтартнă кунсене, аса
илĕр-ха. 33 Пĕр енчен, сире пĕтĕм халăх умĕнче
мăшкăлласа хур тăватчĕç; тепĕр енчен, хăвăр
юлташăрсем çакна тӳснине курса тăратăрччĕ.
34 Тĕрмене хупнисен асапне, çав шутрах манăнне
те, эсир те пĕрлех пайлатăрччĕ. Тӳпере хăвăрăн
лайăхрах, пĕтми пурлăх пуррине пĕлнĕ пирки çĕр
çинчи пурлăхăра туртса илнишĕн те
кулянмастăрччĕ. 35 Малашне те çавнашкалах
шанчăкăра сӳнме ан парăр, уншăн сире аслăран та
аслă сăвап пулĕ. 36 Турă ирĕкне пурнăçласчĕ тесе,
Вăл сăмах парса шантарнине илесчĕ тесе, малашне
те тӳсĕмлĕ пулăр. 37 Мĕншĕн тесен «кĕтмелли
нумаях та юлмарĕ, Килмелли часах килĕ, вăрах
кĕттермĕ. 38 Тӳрĕ пурăнакан ĕненӳпе чĕрĕ пулĕ.
Енчен те вăл Манран пăрăнсан, Манăн ырă
кăмăлăма юрăхлă пулмĕ». 39 Эпир вара Турăран
пăрăннă пĕтес çынсем мар, çирĕп ĕненсе
чунăмăрсене çăлса хăварас текен çынсем.
11 Ĕненӳ шанчăка тултарать, курăнманнине те
курăнмалла тăвать. 2 Çакнашкал ĕненӳшĕн
мăн асаттемĕрсене Турă ырлани паллă. 3 Ĕненĕве
пула эпир çут тĕнчене Турă Хăй сăмахĕпе
пултарнине, курăнманнинчен курăнаканни пулса
кайнине пĕлетпĕр. 4 Ĕненĕве пула Авель Турра
Каинран юрăхлăрах парне кӳнĕ. Ĕненĕве кура Турă,
унăн парнине йышăнса, вăл тӳрĕ пулнине кăтартса
панă. Авель вилнĕ пулин те, ĕненĕве пула халĕ те
пирĕнпе калаçать. 5 Ĕненĕве пула Еноха та
виличченех çӳле, тӳпене куçарнă: «Турă Хăй патне
илнĕрен вара ăна шырасан та тупайман». Ку
тĕнчерен илĕнмиччен Турă «ăна кăмăлланине»
пĕлтернĕ. 6 Ĕненӳсĕр вара Турă кăмăлне юрăхлă
пулма çук, мĕншĕн тесен Ун патне çывхараканăн
Турă пуррине тата Турă Хăйне шыракансене сăвап
парассине ĕненмелле. 7 Ĕненĕве пула Ной та, Турă
мĕн пуласси çинчен асăрхаттарсан, Турра
хисеплесе хăранипе хăйĕн кил-йышне çăлмашкăн
карап тунă. Мĕн пуласси ун чухне уçăлман пулнă-
ха. Ĕненĕве пула вăл, çак пĕтĕм тĕнчене айăпласа,
ĕненӳрен килекен тӳрĕлĕхĕн еткерне илме тивĕç
пулнă.
8 Ĕненĕве пула Авраам та, Турă хушнине итлесе,
хăй еткере илес çĕр-шыва тухса кайнă. Тухнă чухне
вăл хăй ăçта каясса та пĕлмен. 9 Ĕненĕве пула вăл
хăйне сăмах парса шантарнă çĕр-шывра, ют çĕрти
пек, чатăрсенче пурăннă. Исаакпа Иакова та Турă
çав çĕр-шыва еткерлĕхе пама пулнă. Каярахпа
вĕсем те унта çавнашкалах пурăннă. 10 Авраам Турă
ăсталаса лартас çирĕп никĕслĕ хула çинчен
ĕмĕтленнĕ. 11 Ĕненĕвне пула, ача туман Саррăн,
ватăлнă пулин те, çие юлнă, ача çуралнă, мĕншĕн
тесен вăл хăйне Шантараканĕ сăмахне тытасси
пирки иккĕленмен. 12 Çавăнпа ĕнтĕ ватăлса çитнĕ
пĕр этемрен йышлă ăру пулса кайнă. Тӳпери
çăлтăрсем пек, тинĕс хĕрринчи хăйăр пĕрчисем
пек, Авраам тăхăмне ĕнтĕ шутласа та кăлараяс çук.
13 Шантарни пурнăçланнине курма май килмен
пулин те, вĕсем пурте ĕненӳпех вилнĕ. Вĕсем Турă
шантарни хăçан та пулин çитессе пĕлнипех
савăннă. Çак çĕр çинче хăйсем çулçӳревçĕсем,
ютран килнĕскерсем пулнине уççăнах каланă.
14 Çапла калакансем хăйсен тăван çĕр-шывне
шырани куçкĕретех. 15 Хăйсем тухса кайнă тăван
çĕр-шывне асра тытнă пулсан вĕсем унта
тавăрăнма май тупнă пулĕччĕç. 16 Анчах та вĕсем
лайăхрах çĕр-шывалла, тӳпери çĕр-шывалла
ăнтăлнă. Çавăнпа Турă Хăйне вĕсен Турри тесе
калама вăтанмасть, мĕншĕн тесен Турă вĕсем
валли хула хатĕрлесе хунă.
17 Авраам, ĕненĕве пула, Турă хăйне тĕрĕсленĕ
чухне Исаака парне кӳме хатĕр пулнă. Ăна Турă
сăмах парса шантарнă, çавăнпа вăл хăйĕн пĕртен-
пĕр ывăлне Турра парне кӳме хатĕр пулнă. 18 Çакна
вăл Турă хăйне: «Санăн тăхăму Исаакран пуçланĕ»,
– тесе каланине пĕлсе тăнă çинчех тунă. 19 Турă
хăватлă, Вăл вилнисене те чĕртсе тăратма
пултарать, тесе шухăшланă вăл. Чăнах та, вилес
Исаака та Турă чĕртсе тăратнă. Çакна Вăл
малашнехине пĕлтермешкĕн тунă. 20 Ĕненĕве пула
тата малашлăхшăн Исаак Иаковпа Исава пилленĕ.
21 Ĕненĕве пула Иаков, хăй вилес умĕн, Иосифăн
ывăлĕсене иккĕшне те пил панă. Унтан, туйи çине
таянса, Турра пуç тайнă. 22 Ĕненĕве пула Иосиф та
вилес умĕн Израиль халăхĕ Египетран тухасса
пĕлтернĕ, кайран хăйĕн шăмми-шаккипе мĕн
тумаллине те хушса хăварнă. 23 Ĕненĕве пула
ашшĕ-амăшĕ Моисея çуралнă хыççăн виçĕ уйăха
яхăн пытарса усранă. Ачи епле хитре пулнине
курсан вĕсем патша хушнине те итлемен.
24 Ĕненĕве пула Моисей, ӳссе çитĕнсен, хăйне
фараон хĕрĕн ывăлĕ теме пăрахнă. 25 Çылăхлă та
вăхăтлăх киленӳсемпе савăнса пурăниччен Турă
халăхĕпе пĕрле нушаланам тенĕ вăл. 26 Турă
тавăрса парасса пĕлнĕрен вăл Турă Суйласа илнин
хурлăхне Египет пуянлăхĕнчен маларах хунă.
27 Ĕненĕве пула вăл патша çиллинчен хăрамасăрах
Египетран тухса кайнă. Ăна, Курăнманскере, курнă
пекех, Моисей Унăн ирĕкне çирĕп пурнăçланă.
28 Ĕненĕве пула вăл, Израиль çыннисен пирвайхи
ачисене вĕлерекенĕн алли ан тĕкĕнтĕр тесе, пасха
туса алăк суллисене юнпа сăрласа палăртса тухнă.
29 Ĕненĕве пула Израиль çыннисем Хĕрлĕ тинĕс
урлă тип çĕр урлă каçнă пекех каçма пултарнă.

Египет çыннисем вара, вĕсем пекех каçма тăрсан,
путса вилнĕ. 30 Ĕненĕве пула Турă çыннисем хула
тавра çичĕ кун хушши утса çавăраннă хыççăн
Иерихон хӳми ишĕлсе аннă. 31 Раав ятлă аскăн
хĕрарăм, ĕненĕве пула, Турра пĕлменнисемпе
пĕрле вилмен, мĕншĕн тесен Израилĕн вăрттăн
сăнавçисене кăмăллăн йышăннă, хăй патĕнче çĕр
каçарнă, кайран урăх çулпа ăсатса янă.
32 Тата мĕн калам? Гедеон, Варак, Самсон,
Иеффай, Давид çинчен тата Самуилпа ытти
пророксем çинчен каласа памашкăн вăхăт та
çитеймĕ. 33 Ĕненĕве пула çав çынсем патшалăхсене
çĕнтернĕ, тӳрĕлĕхлĕ пурăнăç тунă, Турă
шантарнине илме пултарнă. Вĕсем арăслансене
йăвашлатнă, 34 хаяр вут-çулăма сӳнтернĕ, хĕçрен
хăтăлса юлнă, халсăрскерсем вăй илнĕ, вăрçăра
паттăр пулнă, тăшман çарĕсене хăваласа янă.
35 Вилнисене, чĕртсе тăратса, хĕрарăмсене тавăрса
панă. Хăшĕ-пĕрисем, Турăшăн вилмеллех асап
курнисем, лайăхрах пурăнăçшăн чĕрĕлсе тăрас
тесе, сĕннĕ ирĕклĕхе те йышăнман. 36 Теприсене
тата мăшкăлланă, хĕненĕ, сăнчăрласа тĕрмене
хупнă. 37 Вĕсене чулпа пере-пере вĕлернĕ, пăчкăпа
татнă, асаплантарнă, хĕçпе вĕлернĕ. Вĕсем, сурăх е
качака тирĕсем пĕркенсе ярса, ĕмĕрĕсене
çапкаланса çӳресех ирттернĕ, çити-çитми, хĕн-
хурлă, çын кулли пулса пурăннă. 38 Вĕсен, тĕнчерен
те аслă çынсен, пуш хирсемпе сăрт-тусем тăрăх
çапкаланса çӳреме, çĕр хăвăлĕсемпе хушăкĕсенче
пурăнма тивнĕ. 39 Турă вĕсен ĕненĕвне ырланă,
анчах та сăмах парса шантарнине вĕсем кĕтсе
илеймен. 40 Мĕншĕн тесен Турă вĕсене пирĕнпе
пĕрле кăна чи паха шая çитерме шутланă. Турă
пирĕн валли эпир кĕтнинчен те чаплăраххи
хатĕрлесе хунă иккен.

### Турă сире Хăйĕн ывăлĕсем вырăнне хурать

12 Пире курса-пĕлсе тăракансем пирĕн йĕри-
тавра пĕлĕт пек нумай. Çавăнпа та, ĕнсе
çинчи çĕклеме илсе персе, çылăх тăллине татса,
хамăр утас çула тӳсĕмлĕн утса тухар. 2 Иисус çине
куç илмесĕр пăхар. Вăл – ĕненĕве Пуçараканĕ тата
Пурнăçлаканĕ. Вăл, тӳпере ырлăх курас вырăнне,
мăшкăла пăхса тăмасăр хĕрес çинчи асапа курнă.
Вара Турă престолĕн сылтăм енне ларнă.
3 Халсăрланса кăмăл çирĕплĕхне пĕтерес мар тесен,
çылăхлă çынсен мăшкăлне Тӳсекенĕ пирки
шухăшлăр. 4 Эсир, çылăхпа кĕрешсе, юн тăкман-ха.
5 Ашшĕ ывăлĕсене каланă пек, Турă хăвăра
лăплантарса каланă çак сăмахсене эсир маннă:
«Ывăлăм! Хуçа Турă айăплавне тĕрĕс хакла, Вăл
сана питлет пулсан, хуйха ан ӳк. 6 Мĕншĕн тесен
Хуçа Турă Хăйне савакана асап кăтартать, Хăй
кăмăллакан ывăлне чĕн пушăпа ăс паратьʼ».
7 Çавăнпа та, инкек-синкек килсе тухсан, Турă пире
Хăйĕн ывăлĕсем вырăнне хучĕ тейĕр. Ашшĕ
айăпламан ывăл пулать-и? 8 Мĕн пур ывăлсене
айăпланă пекех сире айăпламарĕç пулсан, эсир
вара чăн ывăлсем мар, тăван мар ывăлсем кăна.
9 Çĕр çинчи атте пире айăпласан эпир ăна
итлетпĕр, чун-чĕм тĕлĕшĕнчен Атте пулакана
пирĕн тата ытларах итлемелле мар-им вара? Ăна
итлени пурăнăç парать-çке-ха! 10 Çĕр çинчи аттесем
пире хăйсен тĕрĕслĕхĕпе вăхăтлăха кăна айăпланă.
Чун-чĕм тĕлĕшĕнчен Атте пулакан вара пире усă
тăвас тесе, Хăйĕн сăвапне парас тесе айăплав
хурать. 11 Кирек епле айăплав та çав вăхăтра
савăнтармасть, кулянтарать. Çапла ăс пани
каярахпа пире тӳрĕлĕхпе канăçлăх çимĕçĕ парать.
12 Çавăнпа та лăштăр кайнă ал-урăрсене
тĕреклетĕр, 13 уксахлакан урăр ан мăкăлтантăрччĕ,
сиплентĕрччĕ тесе, тӳрĕ сукмакпа утăр.

### Турă ырăлăхне йышăнманнисене асăрхаттарни

14 Çынсемпе килĕштерсе, сăваплă пурăнма
тăрăшăр. Сăвапсăр пурăнсан Хуçа Туррăмăра
кураймăр. 15 Сирĕнтен хăшĕ те пулин Турă
ырăлăхне çухатасран асăрханăр. Йӳçек тымартан
наркăмăшлă хунав тухса сиен ан тутăрччĕ, нумай
çынна ан ирсĕрлеттĕрччĕ. 16 Сирĕн хушшăрта, Исав
пек, Турăран пăрăннисем е Турра
хисеплеменнисем ан пулччăр. Исав еткере тивĕçлĕ
малтанхи ачи пулнă. Вăл çав тивĕçе чашăк яшкалла
сутса янă. 17 Пĕлетĕр ĕнтĕ, кайран Исав ашшĕн
пилне илесшĕн питĕ çуннă, анчах ăна пил паман.
Куççулĕпе йĕрсе айăпне йышăнсан та ӳкĕнме мехел
çитереймен.
18 Эсир, Израиль халăхĕ пек, вут-çулăм сирпĕтекен
тата чăн-чăн ту патне çывхармарăр; тĕттĕмлĕх,
сĕмлĕх тата тăвăл патне çывхармарăр; 19 эсир труба
сасси патне, тӳпери сасă патне çывхармарăр.
Тӳперен килекен сăмахсене илтес мар тесе çынсем
Турра тархасласа йăлăннă. 20 Мĕншĕн тесен «çак ту
çумне тискер кайăк сĕртĕнсессĕн те, ăна чулпа е
ухăпа персе вĕлерĕç» тесе хăйсене чарнине çынсем
тӳсеймен. 21 Çак курăну питĕ хăрушă пулнăран
Моисей: «Эпĕ хăранипе чĕтретĕп», – тенĕ. 22 Эсир
вара Сион тăвĕ патне, чĕрĕ Турă хули патне, тӳпери
Иерусалим патне, пин-пин ангел патне çывхартăр.
23 Эсир савăнмашкăн пухăннă малтанхи ывăлсен
Чиркĕвĕ патне çывхартăр. Вĕсен ятне тӳпере çырса
хунă. Эсир пурне те Суд тăвакан Турă патне, паха
шая çитнĕ тӳрĕ çынсен чунĕсем патне çывхартăр.
24 Эсир Хăй урлă çĕнĕ халал панă Иисус патне,
сăваплатса сирпĕтмелли Юн патне, çывхартăр.
Авель юнĕпе танлаштарсан, Иисус юхтарнă Юн
чылай мухтавлăрах.
25 Асăрханăр, Турă каланине итлемесĕр ан тăрăр.
Хăйсене çĕр çинче асăрхаттарса калакана итлемен
çынсем айăпа юлнă пулсан, эпир вара, тӳперен
Калакантан пăрăнсан, пушшех те айăплă пулăпăр.
26 Ун чухне Турă сасси çĕре кисрентернĕ, халĕ вара
Вăл çапла сăмах панă: «Çĕре кăна мар, тӳпене те
татах кисрентерĕп». 27 «Татах» тени кисренменни
яланах пулмашкăн кисренекенни, пултарнăскер,
улшăнасса пĕлтерет. 28 Çавăнпа та пирĕн,

кисренмен Патшалăха тивĕçлисен, пархатарлă
пулмалла. Çав пархатарпа Турра юрăхлăн, чунтан
хисеплесе те хăраса Турăшăн тăрăшар. 29 Мĕншĕн
тесен пирĕн Туррăмăр – йăлтах пĕтерекен вут-
çулăм та.

### Турра юрăхлă пуласси

13 Ĕненекен тăванăрсене юратăр. 2 Ютран
килнĕ ĕненекенсемпе тараватлă пулăр,
мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕрисем хăйсем пĕлмесĕрех
ангелсене хăна туса янă. 3 Хăвăр вĕсемпе пĕрле
ларнă пекех, тĕрмере ларакан ĕненекенсене аса
илсех тăрăр. Хăвăр вĕсемпе пĕрле асап курнă
пекех, асап куракансене те асрах тытса тăрăр.
4 Арлă-арăмлă пурăнăç хисепре пултăр, мăшăрсем
пĕр-пĕрне ан улталаччăр. Улталакансене тата
аскăнланакансене Турă суд тăвĕ. 5 Укçана ан
хапсăнăр, мĕн пуррипе çырлахăр. Мĕншĕн тесен
Турă çапла каланă: «Эпĕ сана пăрахмăп, Эпĕ сана
хăвармăп». 6 Çавăнпа та эпир çирĕп кăмăлпа çапла
калатпăр: «Мана Хуçамăр пулăшать, эпĕ нимĕнрен
те хăрамăп, çын мана мĕнех тăвайĕ?» 7 Хăвăра Турă
сăмахне вĕрентнĕ ўкĕтлевçĕсене асрах тытса тăрăр.
Вĕсем тивĕçлĕ пурăнса тивĕçлĕ вилнине курсассăн,
вĕсем пекех ĕненме тăрăшăр. 8 Иисус Христос ĕнер
те, паян та, ĕмĕр-ĕмĕр – Çавах. 9 Тĕрлĕ ют
вĕрентўсем хыççăн ан кайăр; мĕншĕн тесен
çимелли йăла-йĕркене тытса пыни никама та усă
паман-ха. Кăмăлăра çав йăласемпе мар, Турă
тивлечĕпе çирĕплетĕр. 10 Пирĕн хамăрăн парне
вырăнĕ пур, ун çинчи Турра кўнĕ çимĕçе кĕлĕ
чатăрĕнче ĕçлесе тăракансен те çиме юрамасть.
11 Çылăхшăн парнене кўнĕ выльăх-чĕрлĕх юнне
аслă священник Тасаран таса вырăна илсе кĕрет,
пуснă выльăх-чĕрлĕхне вара тапăр тулашĕнче
çунтарса яраççĕ. 12 Çавăнпа та Иисус, çынсене
Хăйĕн Юнĕпе сăвапласа тасатас тесе, хула хапхи
тулашĕнче асап курнă. 13 Вăл тўснĕ мăшкăла хамăр
çие илер те Ун патне тулашне тухар. 14 Мĕншĕн
тесен кунта пирĕн ялан пурăнмалли хула çук, пулас
хулана эпир ăнтăлса шыратпăр. 15 Çапла вара,
Турра яланах Иисус урлă мухтав парни кўрсе тăрар,
урăхла каласан, тута-çăварăмăрсемпе Ăна мухтар.
16 Пĕрне-пĕри ырă тума ан манăр, туслă пурăнăр –
Турра шăпах çакнашкал парнесем юрăхлă.
17 Хăвăр вĕрентўçĕрсене итлĕр, пăхăнăр. Вĕсем
сирĕншĕн Турă умĕнче явапллă, çавăнпа вĕсем
сирĕн чунăршăн ырми-канми тăрăшаççĕ. Çав ĕçе
вĕсем хуйхăрса мар, савăнса туччăр тесе (вĕсем
хуйхăрса ĕçленинчен сире усă пулас çук), вĕсене
пăхăнăр. 18 Эпир тĕрĕс пурăнасчĕ тетпĕр, çавăнпа
хамăр чунсем тасине шанатпăр. Пирĕншĕн
кĕлтăвăр. 19 Турă мана хăвăртрах сирĕн патăра
тавăрăнмалла тутăрччĕ тесе уйрăмах хытă
кĕлтăвăр.

### Пиллени тата салам яни

20 Хăйĕн сурăхĕсен Аслă Кĕтўçине, Юнĕпе ĕмĕрлĕх
халала çирĕплетнĕ Иисус Христос Хуçамăра
вилĕмрен чĕртсе тăратнă канăçлăх Турри, 21 Хăйĕн
ирĕкне пурнăçлаччăр тесе, сире ырă ĕçсем тума
май патăр. Иисус Христос урлă Вăл пире Хăйне
юрăхлă пек тутăр. Христоса ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!
Аминь.
22 Тăванăмăрсем! Çак ўкĕт сăмахĕсене
йышăнсамăр. Çырасса та эпĕ кĕскен кăна çыртăм.
23 Тата Тимофей тăванăмăра тĕрмерен кăларса
янине пĕлсемĕр. Çывăх вăхăтрах вăл ман патăма
килес пулсан, иксĕмĕр те сирĕнпе курнăçма
тăрăшăпăр.
24 Хăвăра вĕрентекенсемпе ĕненекенсене пурне
те салам калăр. Италирисем те сире салам яраççĕ.
25 Сире пурне те Турă тивлечĕ пултăр! Аминь.

# Иаков çырăвĕ

## Саламлани

1 Турăпа Иисус Христос Хуçамăр чуринчен
Иаковран – пĕтĕм тĕнчипе сапаланнă вун икĕ
йăха – салам!

## Ĕненӳ тата ăс

2 Эй, тăвансем! Тĕрлĕ тĕрĕслеве савăнса-
хĕпĕртесе йышăнăр. 3 Ĕненĕвĕре тĕрĕслени хăвăра
чăтăмлăх кӳнине эсир пĕлетĕр. 4 Чăтăмлăх сире
аталантарĕ, вара эсир тулли пахалăхлă, пĕр
кăлтăксăр пулăр. 5 Ăс çитейменни ăна Турăран
тархасласа ыйттăр – Турă паратех. Памаллине Турă
пурне те çăмăллăн, ӳпкевсĕр парать. 6 Анчах та
Турра ĕненӳллĕн, иккĕленмесĕр тархасламалла.
Мĕншĕн тесен иккĕленекен çын вăл çил
çĕклентерсе сапалакан тинĕс хумĕ евĕр.
7 Иккĕленекен çын пур тĕлĕшĕнчен те тĕрексĕр.
Унашкалли Хуçа Турăран мĕн те пулин ыйтса
илессе ан та шутлатăр.

## Чухăнлăхпа пуянлăх

9 Чухăн ĕненекен хăйне Турă асла кăларнăшăн
савăнтăр. 10 Пуян ĕненекен те Турă хăйне кĕçĕне
хăварнăшăн савăнтăр, мĕншĕн тесен пуянлăх уй-
хир чечекĕ пек пĕтет. 11 Хĕвел тухать те, шăрăх
çитет, курăка ĕнтсе ярать. Курăкĕ типет те, чечекĕ
тăкăнать, унăн илемĕ çухалать. Мулшăн çунакан
пуян та çавăн пекех çухалать.

## Тĕрĕслев тата илĕртӳ

12 Илĕртсе тĕрĕсленине тӳссе ирттерекен çын
телейлĕ. Тивĕç пулсассăн вăл пурăнăç пуç кăшăлне
илĕ. Хуçамăр ăна Хăйне юратакансене пама пулнă.
13 Илĕртсе тĕрĕсленĕ чухне никам та: «Турă мана
тĕрĕслет», – тесе ан калатăр. Мĕншĕн тесен Турă
усалпа çыхланмасть, Хăй никама та илĕртсе
тĕрĕслемест. 14 Кашниех хăйĕн кăмăлĕ туртнипе,
илĕртнипе улталанать. 15 Çылăхлă кăмăл,
пĕтĕленсе, çылăх çуратать. Тунă çылăх вара вилĕм
çуратать.
16 Эй, савнă тăванăмсем! Ан улталанăр. 17 Кирек
епле пархатар та, паха парне те çӳлтен, çутăлăх
Ашшĕ патĕнчен анать. Турă вара яланлăх,
улшăнми. 18 Хăй пултарнисем хушшинче малтанхи
аван çимĕçсем пек пулччăр тесе, Турă пире чăнлăх
сăмахĕпе Хăйĕн ачисем тума шутланă.

## Сăмаха итлесси тата пурнăçласси

19 Çапла вара, савнă тăвансем, калаçнинчен
ытларах итлеме тăрăшăр, çилленме ан васкăр.
20 Мĕншĕн тесен çилĕ этеме Турă тӳрĕлĕхĕнчен
пăрса ярать. 21 Эппин тĕрлĕ тасамарлăхран, юлнă
çилĕрен хăтăлăр. Чунăрсене çăлма пултаракан ӳкĕт
сăмахне йăвашшăн ăша хывăр.
22 Сăмаха итлекенсем çеç ан пулăр, вĕсем хăйсене
хăйсем улталаççĕ кăна. Эсир вара çав сăмаха
пурнăçлакансем пулăр. 23 Мĕншĕн тесен сăмаха
итлекен, анчах сăмах хушнă пек туман çын тĕкĕр
çинче хăйĕн сăнне тинкерекен евĕр. 24 Вăл хăйне
тĕкĕр çинче курать, анчах та тĕкĕр умĕнчен кайнă-
кайман хăй сăнне манса каять. 25 Кам та кам Туррăн
паха саккунне, ирĕклĕх саккунне ăша хывса
пурнăçлать, çав хăйĕн ĕç-пусĕнче телейлĕ пулĕ. Вăл
илтнине манакан мар, Турă сăмахĕ хушнине туса
тăракан.
26 Сирĕнтен кам та кам Турра хисеплетĕп тет,
анчах чĕлхине чармасăр хăйне хăй улталать, вăл
Турра хисепленçи кăна тăвать. 27 Кам та кам
тăлăхсен, тăлăх арăмсен хуйхи-суйхине çăмăллатма
тăрăшать, хăйне тĕнче ирсĕрлĕхĕнчен упрать, çавă
Атте Турă умĕнче таса та çитменлĕхсĕр, çавă Ăна
чăнласах хисеплет.

## Çын камне пăхассинчен асăрхаттарни

2 Эй, тăванăмсем! Эсир, мухтавлă Иисус Христос
Хуçамăра ĕненекенсем, çынна кам пулнине
кура ан хаклăр. 2 Калăпăр, сирĕн пухăва капăр
тумланнă, ылтăн çĕрĕ тăхăннă çын пырать. Тата
пухăва начар çи-пуçлă чухăн та пырать. 3 Эсир
капăр тумланнă çынна асăрхасан: «Сана çакăнта
ларсан лайăхрах пулĕ», – тетĕр. Чухăннине вара:
«Эсĕ çавăнта тăр», е «Ман ура вĕçне лар», – тетĕр.
4 Çапла туса эсир хăвăр ăшăрта пĕрисене
теприсенчен çӳлерех хумастăр-им? Тĕрĕс мар
шухăшлакан судьясем пулса тăмастăр-им?
5 Эй, савнă тăванăмсем! Итлесемĕр мана: ĕненӳпе
пуян пулмашкăн Турă çак тĕнчери чухăнсене
суйласа илмен-им? Хăйне юратакансене шантарнă
Патшалăха Турă чухăнсене еткере парас темен-им?
6 Эсир вара чухăна хапăл тумастăр. Сире
пусмăрлакансем пуянсем мар-им? Сире судсем
тăрăх сĕтĕрекенсем те вĕсем мар-им? 7 Сире
Христос ячĕпе чĕнеççĕ. Çав ырă ята хурлакансем те
вĕсемех мар-им? 8 «Çывăх çыннуна хăвна юратнă

пек юрат», – тенĕ Çырнинче. Енчен те эсир çак
патшалла саккуна тытса пурăнатăр пулсан аван
тăватăр. 9 Енчен те эсир çын камне пăхатăр пулсан
çылăха кĕретĕр, Турă саккунĕпе айăплă пулатăр.
10 Мĕншĕн тесен саккуна пĕтĕмĕшле пăхăнса
пурăнсан та, пĕр-пĕр пил-хушăва пăссан, эсир
пĕтĕм саккуна пăсатăр. 11 «Мăшăрна ан ултала», –
тесе Калаканниех тата: «Ан вĕлер», – тенĕ. Çавăнпа
та эсĕ мăшăрна улталамасан та, çын вĕлерсен,
саккуна пăсакан пулатăн. 12 Эсир ĕнтĕ хăвăра
ирĕклĕх паракан саккунпа айăпланас çынсем пек
калаçăр, пурăнăр. 13 Мĕншĕн тесен хĕрхенме
пĕлменнисене Турă сучĕ те хĕрхенмĕ. Хĕрхенӳ вара
судран та аслăрах.

### Ĕненӳ тата ĕçсем

14 Эй, тăванăмсем! Ĕненетĕп текен, анчах
ĕненĕвне ĕçпе çирĕплетмен çынран мĕн усси?
Çавнашкал ĕненӳ ăна çăлса хăварĕ-и? 15 Ĕненекен
тăванăн тăхăнмалли те, çимелли те çук пулсан,
16 сирĕнтен хăшĕ те пулин ăна мĕн кирлине
памасăрах: «Канăçлă каях, ăшăн тата çисе тăран», –
тенинчен мĕн усси? 17 Ĕненӳ те çавнашкалах, ĕçпе
çирĕплетмесен, хăй халлĕн кăна – вилĕ.
18 Анчах кам та пулин çапла калама пултарать:
«Пĕрин ĕненĕвĕ пур, теприн – ĕçĕ». Ĕçӳпе
çирĕплетмен ĕненĕве эсĕ мана епле кăтартăн? Эпĕ
вара сана хам ĕненнине ĕçĕмсемпе кăтартăп.
19 Турă пĕрре пулнине ĕненсе эсĕ аван тăватăн.
Çакнах усал сывлăшсем те ĕненеççĕ, чĕтресе кăна
тăраççĕ. 20 Эх, айван! Ĕçпе çирĕплетмен ĕненӳ вилĕ
пулнине пĕлессӳ килет-и? 21 Пирĕн мăн асатте
Авраам хăйĕн Исаак ывăлне Турра кӳме парне
вырăнĕ çине хунă. Çапла вăл ĕçĕпе тӳрре тухман-
им вара? 22 Куратăн ĕнтĕ, унăн ĕненĕвĕ ĕçĕпе
килĕшсе тăнă, ĕçне кура унăн ĕненĕвĕ чи паха шая
çитнĕ. 23 Вара Çырнинче калани пурнăçланнă. Унта
çапла çырнă: «Авраам Турра ĕненнĕ, çакна Турă
тӳрĕлĕх шутне кĕртнĕ». Авраама вара «Туррăн тусĕ»
тесе чĕнме пуçланă. 24 Куратăн ĕнтĕ, этем ĕненӳпе
кăна мар, ĕçĕсемпе тӳрре тухать. 25 Çавнашкалах
аскăн хĕрарăм Раав та Турă умĕнче ĕçĕсемпе тӳрре
тухман-им? Вăл вăрттăн сăнавçăсене çĕр выртма
кĕртнĕ, кайран урăх çулпа тартнă. 26 Çапла ĕнтĕ,
чун-чĕмсĕр кĕлетке вилĕ пекех, ĕçсĕр ĕненӳ те
вилĕ.

### Чĕлхе тем тума та пултарать

3 Эй, тăвансем! Пурте вĕрентекен пуласшăн ан
çунăр. Çакна пĕлсе тăрăр: пирĕнтен,
вĕрентекенсенчен, судра тата хытăрах ыйтĕç.
2 Мĕншĕн тесен эпир пурте çылăха нумай кĕретпĕр.
Кам сăмахпа çылăха кĕмест, çав аталанса çитнĕ
пулать. Вăл хăйĕн пĕтĕм кĕлеткине чарма-
пăхăнтарма пултарать. 3 Тĕслĕхрен, хамăра итлетĕр
тесе эпир лашана çăварлăхлатпăр, вара унăн пĕтĕм
кĕлеткине хамăра пăхăнтаратпăр. 4 Е, калăпăр,
карапĕ тем тери пысăк пулсан та, çилĕ тем тери
вăйлă вĕрсен те, пĕчĕк рульпе усă курсах капитанĕ
карапа кирлĕ еннелле ярать. 5 Чĕлхе те
çавнашкалах – ӳт-пĕвĕн пĕчĕк пайĕ çеç пулин те,
нумай тăваять. Кур-ха, пĕчĕкçĕ çулăм чĕлхиех мĕн
пысăкăш вăрмана хыптарса яма пултарать! 6 Чĕлхе
те – çулăм, вăл – усал йăви. Ӳт-пĕвĕн ытти
пайĕсемпе танлаштарсан, вăл пĕтĕм кĕлеткене
ирсĕрлетет. Тамăк вучĕпе хыпса илсе чĕлхе пĕтĕм
пурăнăçа çунтарса ярать. 7 Тем тĕрлĕ тискер кайăка,
вĕçен кайăка, çĕлен-калтапа тинĕс чĕр чунĕсене
этем алла хăнăхтарнă, хăнахтарать. 8 Анчах
çынсенчен пĕри те чĕлхине итлеттереймест. Вăл –
вĕлерекен наркăмăшлă чарайми усал. 9 Чĕлхепех
эпир Атте Турра мухтатпăр, çав чĕлхепех эпир
çынсене ылханатпăр. Çынна вара Турă евĕрлĕ
пултарнă вĕт-ха. 10 Пĕр çăвартанах мухтав сăмахĕ
те, ылхан сăмахĕ те тухать. Эй, тăвансем! Кунашкал
пулмалла мар. 11 Пĕр çăлкуçранах тăварсăр тата
тăварлă шыв тапса тăни пур-и? 12 Эй, тăвансем!
Смоква йывăççи çинче çу çырли ӳсмест, иçĕм çырли
авăрĕ çинче те смоква çырли пулмасть.
Çавнашкалах пĕр çăлкуçран тăварсăр тата тăварлă
шыв юхса тухмасть.

### Çӳлтен анакан ăс

13 Сирĕнтен кам чăннипех те ăслă-тăнлă, çав хăй
ăсне тӳрĕ пурăнса, ăслă йăвашлăхĕпе ырă ĕçсем
туса кăтартса патăр. 14 Анчах та сирĕн чĕрĕрте хаяр
кĕвĕçӳпе чăркăшлăх пулсан, ан мухтанăр, чăнлăха
пăсса ан суйăр. 15 Кунашкал ăс çӳлтен анмасть, вăл –
ку тĕнчери, чун-чĕмсĕр, шуйттанран килекен ăс.
16 Ăçта кĕвĕçӳпе чăркăшлăх, унта йĕркесĕрлĕхпе
тĕрлĕ усаллăх. 17 Çӳлтен анакан ăс вара чăн
малтанах – таса, унтан – татуллă, сăпайлă,
пăхăнуллă, пысăк хĕрхенӳллĕ те ырă ĕçлĕ,
тĕрĕслĕхлĕ, икĕ питлĕ мар. 18 Канăçлăх кӳрекенсем
вара лăпкăн ака тăваççĕ, тӳрĕлĕх çимĕçне те
вĕсемех пухса илĕç.

### Тĕнчепе туслă пулни

4 Эсир пĕр-пĕринпе хирĕçни, харкашни мĕнрен
килет-ха? Ӳт-пĕвĕре çылăхлă кăмăл
алхастарнинчен мар-и вара? 2 Ĕмĕтленетĕр те –
ĕмĕтĕр çитмест. Вĕлермеллех кĕвĕçетĕр те –
кăмăлăр çапах тулмасть. Хирĕçетĕр, харкашатăр –
илес тени сирĕн çаплах çук, мĕншĕн тесен Турра
тархасламастăр. 3 Тархасласан та – илейместĕр.
Мĕншĕн тесен эсир ырă тĕллевшĕн ыйтмастăр,
хăвăр кăмăл туртнине çырлахтарасшăн ыйтатăр.
4 Эй, пăсăк çынсем! Тĕнчепе туслă пулни Турăпа
тăшманла пулнине пĕлместĕр-им эсир? Çапла ĕнтĕ,
кам тĕнчепе туслă пулма тăрăшать, çав Туррăн
тăшманĕ пулса тăрать. 5 Е Çырнинче çак сăмахсене
ахаль каланă пулĕ тетĕр-и? Акă вăл сăмахсем: «Турă
пирĕн ăшри Хăйĕн сывлăшне кĕвĕçес таранах
сават». 6 Анчах та Турă пире тата пысăкрах ырăлăх

парать. Ҫавӑнпа та Ҫырнинче ҫапла каланӑ: «Турӑ
мӑнкӑмӑллисене хирӗҫлет, йӑвашшисене вара
ырӑлӑхне парать».
7 Ҫапла вара, хӑвӑра Турӑ аллине парӑр.
Шуйттана хирӗҫ тӑрӑр, вара вӑл сирӗн патӑртан
тарӗ. 8 Турӑ патне пырӑр, вара Вӑл та сирӗн патӑра
пырӗ. Эй, ҫылӑхлӑ ҫынсем, аллӑрсене ҫуса тасатӑр.
Эй, икӗ питлисем, чун-чӗрӗре тӳрлетӗр. 9 Хуйхӑрӑр,
йӗрӗр, ӳлесе макӑрӑр! Эсир кулни – йӗнине куҫтӑр,
эсир савӑнни – кулянниние куҫтӑр. 10 Хуҫа Турӑ
умӗнче мӗскӗн пулӑр, Вӑл вара сире асла кӑларӗ.

### Ӗненекен тӑванӑра ан айӑплӑр

11 Эй, тӑвансем! Пӗр-пӗрне ан хурлӑр. Кам
тӑванне хурлать е айӑплать, ҫав Турӑ саккунне
хурлать, айӑплать. Саккуна айӑплатӑн пулсассӑн
вара эсӗ ӑна пӑхӑнакан мар, суд тӑвакан. 12 Анчах
та ҫынсене Саккун паракан та, Судья та пӗр Ҫавах:
Вӑл ҫӑлма та, пӗтерме те пултарать. Ҫывӑх ҫыннуна
айӑпламашкӑн эсӗ кам вара?

### Каппайни пирки асӑрхаттарни

13 «Паян-и, ыран-и ҫав-ҫав хулана кайӑпӑр та, унта
ҫулталӑк хушши сутӑ туса пурӑнӑпӑр, тупӑш
илӗпӗр», – теҫҫӗ хӑшӗ-пӗрисем. Эй, ҫакнашкал
калаҫакансем, халӗ мана итлӗр-ха. 14 Эсир ыран
мӗн пуласса пӗлместӗр: эсир пурӑнни самантлӑх
курӑнса ҫухалакан тӗтре пек кӑна. 15 «Хуҫа Турӑ
парсассӑн, сывлӑх пулсассӑн ҫавна-ҫавна тӑвӑпӑр»,
– теес вырӑнне 16 эсир мӑнкӑмӑллӑн
каппайланатӑр. Ҫакнашкал мухтанса ҫӳрени вӑл
пит усал. 17 Ҫапла вара, ырӑ тумаллине пӗлсе тӑнӑ
ҫӗртех ырӑ туман ҫын ҫылӑха кӗрет.

### Пуянлӑх пирки асӑрхаттарни

5 Эй, эсир, пуянсем! Хӑвӑра кӗтекен
инкексемшӗн макӑрӑр, ӳлесе йӗрӗр! 2 Сирӗн
пуянлӑх ҫӗрсе кайнӑ, сирӗн тумтире кӗве ҫисе янӑ.
3 Ылтӑн-кӗмӗлӗр тутӑхнӑ. Ҫав тутӑх сире хирӗҫ
кӑтартса параканӗ пулӗ, вӑл сирӗн ӳт-пӗвӗре вут
пек пӗтерӗ. Эсир мул пухрӑр-пухрӑр, анчах та
юлашки кунсем ҫитрӗҫ. 4 Сирӗн уйсене тарҫӑсем
вырса пуҫтарчӗҫ, анчах та эсир вӗсене тӳлемерӗр.
Выракансем халӗ сасӑпах йӗреҫҫӗ, вӗсен сассине
Хуҫа Турӑ Саваоф илтрӗ. 5 Эсир ку тӗнчере иртӗхсе,
киленсе пурӑнтӑр; ӗнтӗ пусма самӑртнӑ выльӑх
пекех мӑнтӑрланса кайрӑр. 6 Эсир Тӳррине айӑп
хурса вӗлертӗр, Вӑл вара сире хирӗҫ тӑмарӗ.

### Чӑтӑмлӑх тата кӗлӗ

7 Эй, тӑвансем! Ҫапла вара Хуҫамӑр киличчен
чӑтӑмлӑ пулӑр. Ҫӗр ӗҫченӗ паха тыр-пул туса
илмешкӗн мӗн чухлӗ кӗтнине асра тытӑр: вӑл кӗрхи
ҫумӑра та, ҫурхи ҫумӑра та чӑтӑмлӑн кӗтет. 8 Эсир те
чӑтӑмлӑн кӗтӗр. Чун-чӗрӗрсене ҫирӗплетӗр,
мӗншӗн тесен Хуҫамӑр тепре килес вӑхӑт ҫывӑх
ӗнтӗ. 9 Эй, тӑвансем! Айӑпа юлас мар тесен пӗр-
пӗрне ан ӳпкелешӗр. Ӗнтӗ Суд тӑваканӗ алӑк
умӗнчех тӑрать. 10 Эй, тӑвансемӗр! Асапсене
тӳсмешкӗн, чӑтӑмлӑ пулмашкӑн эсир Хуҫамӑр
ячӗпе калаҫнӑ пророксенчен тӗслӗх илӗр. 11 Нумай
чӑтнисене эпир телейлисем тетпӗр. Эсир Иов
чӑтӑмлӑхӗ ҫинчен илтнӗ. Хуҫа Турӑ ирӗкӗпе унӑн
асапӗсем мӗнле вӗҫленнине те пӗлетӗр. Мӗншӗн
тесен Хуҫа Туррӑн ырӑ кӑмӑллӑхӗпе хӗрхенӳлӗхӗ
нумай.
12 Эй, тӑвансемӗр! Чӑн малтанах эсир тупа тума
пӑрахӑр: ҫӗрпе те, пӗлӗтпе те – нимӗнпе те тупа ан
тӑвӑр. Айӑпланмалла пулас мар тесессӗн сирӗн
сӑмахӑр: «Ҫапла, ҫапла» тата «Ҫук, ҫук», – тени кӑна
пултӑр.
13 Сирӗнтен кам та кам инкеке лексен, кӗлтутӑр.
Кам та кам савӑнӑҫлӑ пулсан, псаломсем юрлатӑр.
14 Кам та кам чирлесен, Хӑй патне Чиркӳ
пресвитерӗсене чӗнтӗр. Вӗсем уншӑн кӗлтуччӑр,
Хуҫамӑр ячӗпе чирлин пуҫне елей сӗрччӗр.
15 Ҫирӗп ӗненсе кӗлтуни вара чирлӗ ҫынна сыватӗ,
Хуҫа Турӑ ӑна ура ҫине тӑратӗ. Ҫав ҫын ҫылӑха кӗнӗ
пулсан, ҫылӑхӗсем каҫарӑнӗҫ. 16 Хӑвӑр ҫылӑхӑрсене
пӗр-пӗрне уҫса парӑр. Сывалас тесессӗн пӗр-
пӗриншӗн кӗлтӑвӑр. Тӳрӗ ҫын хӗрӳллӗн кӗлтуни
тем тума та пултарать! 17 Илия пирӗн пек ҫынах
пулнӑ. Вӑл ҫумӑр ан ҫутӑрччӗ тесе хӗрӳллӗн
кӗлтунӑ та – висӗ ҫул та ултӑ уйӑх ҫӗр ҫине тумлам
ҫумӑр та ӳкмен. 18 Кайран татах кӗлтунӑ та – тӳпе
ҫумӑр ярса панӑ, ҫӗр тулӑх тырпул ӳстернӗ.
19 Эй, тӑвансем! Сирӗнтен пӗри-пӗри чӑнлӑхран
пӑрӑнса кайсан, тепри ӑна чӑнлӑх ҫулӗ ҫине
тавӑртӑр. 20 Ҫакна пӗлсе тӑрӑр: суя ҫултан чӑнлӑх
ҫулӗ ҫине тавӑракан ҫын хайхи ҫылӑха кӗнин чунне
вилӗмрен ҫӑлса хӑварать, ҫапла майпа нумай-
нумай ҫылӑх каҫарӑнӗ.

# Петрăн 1-мĕш

### Саламлани

1 Иисус Христос апостолĕнчен Петртан – Понт,
Галати, Каппадоки, Аси, Вифини тăрăхĕнче
сапаланса кайнисене, ытти ĕненекенсем пекех çак
тĕнчешĕн юттисене. Иисус Христоса пăхăнмашкăн,
Унăн Юнĕпе тасатмашкăн сире Атте Турă чăн
малтанах палăртса хунă, Сывлăшпа сăваплатса
суйласа илнĕ. Сире пурне те Турă ырăлăхĕпе
канăçлăхĕ тата ытларах пултăр.

### Чĕрĕ шанчăк

3 Иисус Христос Хуçамăрăн Турри тата Ашшĕ
мухтавлă пултăр. Унăн ырă кăмăлĕ виçесĕр.
Христоса вилĕмрен чĕртсе тăратса Турă пире чĕрĕ
шанчăк памашкăн çĕнĕрен çуратрĕ. 4 Çав шанчăк –
сирĕншĕн тӳпере упранакан таса, çĕрми, пĕтми
еткер. 5 Юлашки вăхăтсенче сирĕн çăлăнăç
илмелле. Ĕненĕвĕре пула Турă хăвачĕ сире
çавăншăн сыхласа усрать. 6 Эппин, уншăн савăнăр.
Халĕ тем тĕрлĕ тӳсме тивет пулин те, кăштах
кулянса илĕр те, савăнăр. 7 Ылтăна вутпа тĕрĕсленĕ
пек, сирĕн ĕненĕвĕр те асаппа тĕрĕсленет. Вара,
Иисус Христос тепре килсессĕн, пĕтмелли
ылтăнран хаклăрах ĕненĕвĕр хисепе, мухтава, чапа
тивĕç пулĕ. 8 Хăвăр курман Христоса эсир юрататăр;
халĕ те, курмасăрах, Ăна ĕненетĕр, калама çук
хĕпĕртесе, савăнмаллипех савăнатăр. 9 Ĕнтĕ эсир
ĕненĕвĕр тĕллевĕ патне – чуна çăласси патне –
çитсе пыратăр.
10 Çав çăлăнăç хăçан тата епле килессине
пророксемех тĕплĕн тишкерсе тĕпченĕ. Эсир илес
ырăлăх çинчен вĕсем малтанах каласа хунă.
11 Христос курас асапсем çинчен, кайран Вăл
мухтава тухасси çинчен Христос Сывлăшĕ
пророксем урлă малтанах пĕлтернĕ. Вĕсем çакă
хăш вăхăтра, мĕнлерех пуласса пĕлме тăрăшнă.
12 Пророкла каланисем хăйсемшĕн мар, пирĕншĕн
пулнине Турă пророксене уçса панă. Çӳлтен аннă
Святой Сывлăш хăвачĕпе Ырă Хыпар
пĕлтерекенсем халĕ сире çавăн çинченех ӳкĕтлесе
вĕрентеççĕ. Çӳлти ангелсем те çав вăрттăнлăха
пĕлесшĕн.

### Сăваплă пурăнма чĕнсе калани

13 Çавăнпа та, савнă тусăмсем, ăс-тăнăра
çивĕчлетĕр, сыхă пулăр. Иисус Христос тепре
килсессĕн хăвăр ырăлăх илессе çирĕп шанăр.
14 Итлекен ачасем пек пулăр. Турра пĕлмен
чухнехи, малтанхи çылăхлă кăмăла хăвăрпа
хуçаланма ан парăр. 15 Пачах та урăхла, хăвăра
чĕнсе илнĕ Турăран тĕслĕх илсе, пур тĕлĕшĕнчен
те сăваплă пулăр. 16 Çырнинче çапла каланă: «Таса
пулăр, мĕншĕн тесессĕн Эпĕ таса». 17 Çын кам
пулнине кура мар, ĕçне кура Хаклакана Атте тетĕр
пулсан, хăвăршăн ют тĕнчере Турă сумлăхĕнчен
хăраса пурăнăр. 18 Пĕлетĕр ĕнтĕ, сире мăн
аслаçăрсенченех юлнă пушă пурăнăçран тутăхса
пĕтекен ылтăн-кĕмĕлпе мар, пĕр çитменлĕхсĕр,
таса Путек евĕр Христосăн хаклă Юнĕпе тӳлесе
илнĕ. 20 Тĕнчене пултаричченех Ăна парнелĕхе
палăртса хунă, анчах та сире çăлмашкăн Вăл
юлашки вăхăтсенче çеç çĕр çине килнĕ. 21 Ăна
вилĕмрен чĕртсе тăратнă, мухтава кăларнă Турра
эсир Христос урлă ĕненнĕ. Çавăнпа та сирĕн
ĕненĕвĕрпе шанчăкăр – Турăра.
22 Пĕр-пĕрне яланах чунтан-чĕререн юратăр.
Ĕненекен тăванăрсене ултавсăр юратас тесен вара
чунăрсене чăнлăха пăхăннипе, Святой Сывлăш
пулăшнипе тасатăр. 23 Эсир вилĕмлĕ этемрен мар,
вилĕмсĕр те ĕмĕр-ĕмĕр пурăнакан Турă
сăмахĕнчен çĕнĕрен çуралнă. 24 Мĕншĕн тесен
çапла каланă: «Пур çын та курăк пек, этемĕн кирек
епле чапĕ те курăк çинчи чечек пек. Курăкĕ типет
те, чечекĕ тăкăнать, 25 Хуçамăр сăмахĕ кăна ĕмĕр-
ĕмĕр пурăнать». Çав сăмаха – Турă сăмахне – сире
ӳкĕтлесе вĕрентнĕ те ĕнтĕ.

### Чĕрĕ чул тата сăваплă халăх

2 Çапла вара, тĕрлĕ çилĕрен, тĕрлĕ чеелĕхпе
икĕпитлĕхрен, кĕвĕçӳрен, çынна хурласран
хăтăлăр та, 2 çăлăнăç илмешкĕн ӳссе çитеесчĕ тесе,
кăкăр ачисем пек, чун-чĕмĕн таса сĕчĕ патне
туртăнăр. 3 Ĕнтĕ эсир астивсе пăхрăр, Хуçамăр
ыррине куртăр. 4 Эсир Ун патне, чĕрĕ чул патне,
çывхаратăр. Çынсем ăна пăрахăçланă, анчах та
Турăшăн вăл паха пулнă, Турă ăна суйласа илнĕ.
5 Эсир те чĕрĕ чул евĕрлĕ. Чун-чĕм çуртне купаланă
чухне Турра хăвăрпа усă курма парăр. Иисус
Христос урлă Турра юрăхлă чун-чĕм парнисем
кӳмешкĕн çав çуртра сирĕн сăваплă священниксем
пулмалла. 6 Çырнинче çапла каланă: «Акă, суйласа
илнĕ, хаклă, никĕсри тĕп чула Эпĕ Сионра хуратăп;
Ăна ĕненекен намăса юлмĕ». 7 Çапла вара,
сирĕншĕн, ĕненекенсемшĕн, Вăл питĕ хаклăскер.
Ĕненменнисемшĕн – çурт тăвакансем пăрахăçланă

чул кăна. Анчах та Вăл никĕсри тĕп чул пулса тăчĕ.
Вăл – такăнтаракан чул, такăнтарса ӳкерекен чул.
8 Турă сăмахне ĕненменнисене унран такăнма
пӳрнĕ.
9 Эсир вара – суйласа илнĕ халăх, Патша
священникĕсем, сăваплă халăх, Туррăн çыннисем.
Сирĕн тивĕçĕр – хăвăра тĕттĕмрен Хăйĕн чаплă
çутине Чĕнсе илекенĕн тĕлĕнмелле ĕçĕсем çинчен
хыпарласси. 10 Тахçан эсир те халăхах пулман, халĕ
– Туррăн халăхĕ. Тахçан сире каçарман, халĕ –
каçарнă.

### Турă чурисем пек пурăнăр

11 Савнă тусăмсем! Эсир çак тĕнчере юттисем, çул
çӳревçĕсем. Эпĕ сире чунăрсемпе кĕрешекен ӳт-пӳ
хистенинчен пăрăнма тархаслатăп. 12 Ытти
халăхсем хушшинче ырă туса пурăнăр, вĕсемшĕн
тĕслĕх пулăр. Вара вĕсем, халĕ сире усал
тăвакансем тесе хурлаççĕ пулин те, сирĕн ырă
ĕçĕрсене курса, Турă килнĕ кун Ăна мухтаччăр.
13 Çĕр çинчи пуçлăхсене Хуçа Турăшăн пăхăнăр:
патшана – патшалăхра чи асли пулнишĕн, 14 вăл
лартнă пуçлăхсене – усал тăвакансене айăпласа,
ырă тăвакансене хисепе кăларнишĕн. 15 Мĕншĕн
тесен Турă ирĕкĕ çапла: пирĕн, ырă туса, пĕлмесĕр
калаçакан ăссăр çынсен çăварне хупламалла.
16 Ирĕклĕ çынсем пулин те, ирĕклĕхпе витĕнсе усал
тăвакансем пек мар, Турă чурисем пек пурăнăр.
17 Пурне те сума сăвăр, ĕненекен тăванăрсене
юратăр, Турăран хăрăр, патшана хисеплĕр.

### Христос асапĕсен тĕслĕхĕ

18 Эй, тарçăсем! Хуçăрсене хăраса сума сăвăр. Ырă
та хĕрхенӳллĕ хуçасене кăна мар, хаяррисене те
сума сăвăр. 19 Айăпсăрах хĕн-хур куракан хăйĕн
асапне Турă çинчен шухăшласа тӳсĕмлĕн чăтни
Турра юрăхлă. 20 Айăпа кĕнишĕн хĕненине
чăтăмлăн тӳсетĕр пулсан, сире мĕн мухтамалли
пур? Анчах та ырă тунишĕн нуша куратăр, тӳсетĕр
пулсан – çакă Турра юрăхлă. 21 Сире çавăншăн
чĕнсе илнĕ те, мĕншĕн тесен Христос пирĕншĕн
асап тӳснĕ. Хăй хыççăн пыракансем пулччăр тесе
Вăл пире тĕслĕх кăтартнă. 22 Вăл нимĕнле çылăх та
туман, Унăн чĕлхи-çăварĕнче нимĕнле ултав та
пулман. 23 Хăйне сăмахпа хур тăвакансене Вăл хур
туман, асап кăтартакансене асаппа хăратман,
тавăрассине Тӳрĕ суд Тăвакан аллине панă. 24 Пире
çылăхсенчен хăтарас, тӳрĕ пурăнтарас тесе, Вăл
пирĕн çылăхсене Хăйĕн ӳчĕпе хĕрес çине çĕкленĕ.
Эсир Унăн суранĕсемпе сывалнă. 25 Мĕншĕн тесен
эсир çĕтсе кайнă, кĕтӳçĕсĕр сурăхсем евĕрччĕ, халĕ
вара чунăрсен Кĕтӳçи тата Сыхлавçи патне
тавăрăнтăр.

### Арăмĕсемпе упăшкисем

3 Эй, арăмсем! Эсир те çавнашкалах
упăшкăрсене итлĕр. Вара, арăмĕсем хăйсене
епле тыткаланине, Турăран хăраса тата таса
пурăннине курса, Ырă Хыпара йышăнман хăшĕ-
пĕрин упăшкисем пĕр сăмахсăрах ĕненме пуçлĕç.
3 Çӳç-пуçа хитрелетсе явни, ылтăн капăрчăксем
çакни, япшар çи-пуç тăхăнни – тулаш илем кăна.
Сирĕн илемĕр вара ун пек мар, 4 ăшри, чун-чĕрери
пытарăнчăк, пĕтми илем пултăр. Йăваш та лăпкă
кăмăл Турăшăн хаклă. 5 Шăпах çакнашкал илемпе
пурăннă та Турра шанакан сăваплă хĕрарăмсем
ĕлĕкрех: вĕсем упăшкисене итленĕ. 6 Сарра та
Авраама пăхăннă, ăна хуçам тенĕ. Нимĕнрен
хăрамасăр ырă туса пурăнатăр пулсан, эсир те
Саррăн хĕрĕсем пулатăр. 7 Эй, упăшкисем! Эсир те
çавнашкалах арăмăрсене ăнланса, черчен савăт-
сапана тыткаланă пек, упраса пурăнăр, ĕненӳ
тĕлĕшĕнчен вĕсем пирĕнпе пĕрлех парнелĕхе
чĕрĕлĕх илес çынсем тесе хисеплĕр. Вара сире таса
чунтан кĕлĕ тума нимĕн те чăрмантармĕ.

### Тӳрĕлĕхшĕн хур курасси

8 Тата çакна каламалла: пĕр шухăш-туйăмлă
пулăр, ĕненекен тăванăрсене юратăр, хĕрхенӳллĕ,
вашаватлă, сăпайлă пулăр. 9 Усала хирĕç усалпа,
сăмахпа кӳрентернине хирĕç кӳрентерӳпе ан
тавăрăр, тавăрас вырăнне пиллĕх сунăр. Çакна
пĕлсе тăрăр: Турă сире пиллĕхлĕ пулмашкăн
суйласа илнĕ. 10 Кам савăнса пурăнасшăн, ырă кун-
çул курасшăн, çав чĕлхи-çăварне усал, ултавлă
сăмахсенчен чартăр. 11 Усал ĕçрен пăрăнтăр, ырă ĕç
тутăр; канăçлăх шыраса канăçлăх патне ăнтăлтăр.
12 Мĕншĕн тесен Хуça Турă тӳрĕ çынсем çине
пăхать, вĕсен кĕллине итлет. Усал тăвакансенчен
вара вĕсене çĕр çинчен пĕтерес тесе Хуçамăр
пăрăнать.
13 Эсир ырришĕн тăрăшатăр пулсан, камах сире
усал тăвайĕ? 14 Енчен те тĕрĕслĕхшĕн хур куратăр
пулсан, эсир телейлĕ. Усал тăвакансенчен ан
шикленĕр, ан хăрăр. 15 Чун-чĕрĕрте Хуçа Турра
хисеплĕр. Эсир мĕне шанни çинчен кам та пулин
ыйтсан вара йăвашшăн, чунтан хисеплесе хурав
пама яланах хатĕр пулăр. 16 Христоспа пĕрлĕхлĕ
ырă пурăннăшăн сире усал тăвакансем теççĕ, усал
сăмах сараççĕ. Çав элекçĕсене намăса
хăвармашкăн таса чунлă пулăр. 17 Турă ирĕкĕ çапла
пулсассăн, эппин, ырă ĕçшĕн асапланни усал ĕçшĕн
асапланнинчен аванрах. 18 Мĕншĕн тесессĕн, пире
Турă патне илсе пырас тесе, Христос та пирĕн
çылăхсемшĕн асап курнă. Вăл, Тӳрĕскер, тӳрĕ мар
пурăнакансемшĕн пĕрре вилнĕ. Ӳт-пĕвне вĕлернĕ
пулин те, Вăл, чун-чĕмĕпе чĕрĕлсе, 19 тамăка анса,
унти чунсене Ырă Хыпар пĕлтернĕ. 20 Ĕлĕк-авал,
Ной вăхăтĕнче, карап тунă чухне, Турă çав чунсем
пăхăнасса чăтăмлăн кĕтнĕ пулин те, вĕсем
пăхăнман. Вара карап çине нумаййăн та мар,
саккăрăн ларнă та шыв çинче çăлăнса юлнă. 21 Çакă
вăл – пулассин сăнарĕ: халĕ эпир, çăлăнас тесе,
шыва кĕретпĕр. Шыва кĕни вара ӳт-пĕве çуса
тасатни мар, таса чунпа пурăнмашкăн Турра сăмах

пани. Иисус Христос чĕрĕлсе тăнине пула, шыва
кĕни пире çăлăнăç патне илсе пырать. 22 Христос,
тӳпене çĕкленсе, Туррăн сылтăм енне ларнă; Ăна
ангелсем те, çӳлти влаçсемпе хăватсем те пăхăннă.

### Туррăн ырăлăхĕпе лайăх хуçа пек усă курăр

4 Христос сирĕншĕн ӳт-пĕвĕпе епле асап курнă,
эсир те çаплах, çав шухăш-кăмăлпах
çирĕпленĕр. Мĕншĕн тесен ӳт-пĕвĕпе асап куракан
çылăха кĕме пăрахать. 2 Çав шухăш-кăмăлпа
çирĕпленсе вара çĕр çинчи юлнă кун-çула çылăхлă
кăмăл хыççăн кайса мар, Турă ирĕкне пăхăнса
пурăнасчĕ тейĕр. 3 Ĕнтĕ çитĕ, ахаль те эсир чăн
Турра пĕлмен халăхсем пек кăмăл хыççăн кайса
чылай вăхăт хушши путсĕрленсе, аскăнланса арçын
арçынпа е выльăхпа асса, ясар шухăшласа, ĕçке
ерсе, намăссăр ĕçкĕ-çикĕсем ирттерсе, ирсĕр
кĕлеткесене пуççапса пурăнтăр. 4 Халĕ вара вĕсем,
эсир ĕлĕкхи пек вĕсемпе пĕрле çапла путсĕр
пурăнма килĕшменнинчен тĕлĕнсе, сирĕн çинчен
усал сăмах сараççĕ. 5 Ĕнтĕ Вăл чĕррисене те,
вилнисене те суд тума хатĕр, вĕсем Унăн умĕнче
явап тытĕç. 6 Этемле ӳт-пĕвĕпе суд умне тăма тивнĕ
пулин те, Турăлла чун-чĕмĕпе чĕрĕлĕхе кĕрейччĕр
тесе, вилнисене Ырă Хыпар пĕлтернĕ те ĕнтĕ.
7 Ĕнтĕ йăлтах вĕçленес вăхăт çитсе пырать. Эппин,
ăслă-тăнлă пулăр, кĕлтуса сыхă тăрăр. 8 Пуринчен
те ытларах вара пĕр-пĕрне юратăр, мĕншĕн тесен
юратулăх нумай-нумай çылăха саплаштарать.
9 Пĕр-пĕринпе ӳпкевсĕр-мĕнсĕр тараватлă пулăр.
10 Сирĕнтен кашнинех Турă пултарулăх панă.
Эппин, пĕр-пĕриншĕн тăрăшса, Туррăн тĕрлĕ
ырăлăхĕпе лайăх хуçа пек усă курăр. 11 Кама
вĕрентме пӳрнĕ, çавă Турă сăмахĕпе калаçтăр. Кама
Турă ячĕшĕн ĕçлеме пӳрнĕ, çавă Турă хăвачĕпе
ĕçлетĕр. Çаксене йăлтах Иисус Христос урлă Турра
мухтава кăларасчĕ тесе тăвăр. Вăл ĕмĕр-ĕмĕр
мухтавлă, хăватлă. Аминь.

### Христианин пек асап тӳссе

12 Эй, савнă тусăмсем! Хăвăра асап вучĕ
пĕçертсессĕн, мĕскер пулса иртет тесе ан тĕлĕнĕр –
эсир асап витĕр тухса тĕрĕсленетĕр. 13 Кулянас
вырăнне, Христос асапĕсене тӳсмешкĕн эпир те
хутшăнатпăр тесе хĕпĕртĕр. Вара Унăн мухтавĕ
čăннипех палăрнă кун эсир хĕпĕртемеллипех
хĕпĕртĕр. 14 Сире Христос ячĕшĕн хурлаççĕ пулсан,
эсир телейлĕ, эппин, сирĕнте мухтав Сывлăшĕ,
Святой Сывлăш пур. Вĕсем Ăна хурлаççĕ, эсир –
мухтава кăларатăр . 15 Сирĕнтен пĕрин те вĕлерсе е
вăрласа, е усал туса, е çынăнне хапсăнса
айăпланмалла ан пултăрччĕ çеç. 16 Христианин
пулнăшăн тӳсетĕр пулсан, ан вăтанăр. Вăтанас
вырăнне, çапла шăпа пӳрнишĕн Турра мухтăр.
17 Суд часах пуçланмалла. Пирĕн, Турă халăхĕн, суд
умне чи малтан тăмалла. Суд тума пирĕнтен
пуçлаççĕ пулсан, Туррăн Ырă Хыпарне
пăхăнманнисемпе мĕн пулĕ? 18 Тӳрĕ пурăнакан çын
аран-аран çăлăнса юлаять пулсан, Турра
хисеплеменнине, çылăхлине мĕн кĕтет? 19 Эппин,
Турă ирĕкĕпе асап тӳсекенсем чунĕсене Хăй
сăмахне тытакан Пултаракана шанса паччăр,
малашне те ырă тусах пурăнччăр.

### Турă кĕтĕвĕшĕн тăрăшасси

5 Эпĕ хам та чиркӳ пуçлăхĕ, Христос асапĕсене
куçăн кураканĕ. Вăл тепре килсессĕн Унăн
мухтавне тивĕçес çын пулнă май, сирĕн чиркӳ
пуçлăхĕсене йăлăнсах калатăп: 2 хăвăра шанса панă
Туррăн кĕтĕвне пăхăр, сыхлама хушнăран мар, чун
хушнипе тата Турра юрăхлă сыхлăр. Пуяс тесе мар,
ĕçе тĕплĕн тăвас тесе тăрăшăр. 3 Хăвăра пăхма
шанса панисем вĕсем сирĕн мар – Туррăн. Çавăнпа
вĕсемпе ан хуçаланăр, вĕсемшĕн тĕслĕх пулăр.
4 Вара, Çӳлти Кĕтӳçĕ килсессĕн, эсир мухтавăн
шанми пуç кăшăлне илме тивĕç пулăр. 5 Эсир те,
кĕçĕннисем, аслисене итлĕр. Вара пурте, пĕр-пĕрне
итлесе, пĕр-пĕринпе сăпайлă та йăваш пулăр.
Мĕншĕн тесен Турă мăн кăмăллисене хирĕçлет,
йăвашшисене Хăйĕн тивлетне парать.
6 Ĕнтĕ Туррăн вăй-хăватлă алли умĕнче пуçăрсене
тайăр, вăхăчĕ çитсессĕн Вăл сире çӳле çĕклĕ. 7 Вăл
сирĕншĕн тăрăшать, çавăнпа та хăвăр хуйха Ăна
шанса парăр. 8 Ăслă-тăнлă та сыхă пулăр: сирĕн
тăшман, шуйттан, арăслан пек хăрлатса, кама
хыпса çăтмаллине шыраса çӳрет. 9 Çирĕп ĕненӳпе
ăна хирĕç тăрăр. Ĕненекен тăванăрсем те пĕтĕм
тĕнчипе çавнашкал асапах курнине асрах тытăр.
10 Асап курасси сирĕн нумаях юлмарĕ: тĕрлĕ
ырăлăхăн Турри пире Христос Иисус урлă Хăйĕн
ĕмĕрлĕх мухтавне пама чĕнсе илнĕ. Çав вăхăтлăх
асапсене тӳссе ирттерсессĕн Вăл сире ура çине
тăратĕ, çирĕплетĕ, хăватлатĕ, тĕреклетĕ. 11 Вăл
ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă, хăватлă. Аминь.

### Çыру вĕçĕнчи саламсем

12 Çак кĕске çырăва Силуан пулăшнипе çыртăм.
Ман шухăшпа, вăл сирĕн шанчăклă тăванăр.
Çырасса эпĕ сире хавхалантарас тата шантарас
тесе çыртăм. Мĕн калани йăлтах – Туррăн чăн-чăн
ырăлăхĕ çинчен çирĕплетсе калани, çавна эсир
тытса пырăр. 13 Сире Вавилонри хăвăр пекех
суйласа илнĕ ĕненекенсем тата ĕненӳри ывăлăм
Марк салам яраççĕ. 14 Пĕр-пĕрне тăванла юратса
чуптăвăр. Сире, Христос Иисуспа пĕрлĕхлисене,
пурне те канăçлăх пултăр. Аминь.

# Петрӑн 2-мӗш

### Саламлани

1 Иисус Христос чуринчен тата апостолӗнчен
Симон Петртан – Туррӑмӑрпа Ҫӑлаканӑмӑр
Иисус Христос тӳрӗлӗхне пула хамӑрпа танах паха
ӗненӳ илнисене: 2 Турра тата Христос Иисус
Хуҫамӑра пӗлсе пынӑҫемӗн сире ырӑлӑхпа
канӑҫлӑх ытларах та ытларах пултӑр.

### Христианин пулма чӗнсе тата суйласа илни

3 Хамӑра мухтавӗпе тата ырӑлӑхӗпе Чӗнсе
илекене пӗлнӗҫемӗн пӗлсе пынӑ пирки Турра
хисеплесе пурӑнмашкӑн мӗн кирлине йӑлтах пире
Унӑн турӑлӑх хӑвачӗ панӑ. 4 Хӑйӗн мухтавӗпех,
ырӑлӑхӗпех Турӑ пире Хӑй евӗрлӗ пултарма чаплӑ
та паха сӑмах парса шантарнӑ. Ҫав шантарнине
тивӗҫмешкӗн вара пирӗн ку тӗнчере хуҫаланакан
ӳт-пӳ астарнинчен пӑрӑнмалла. 5 Ҫакна
тивӗҫмешкӗн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗненӳре
ырӑлӑхлӑ пулӑр, ырӑлӑхра пӗлӳллӗ пулӑр, пӗлӳре
чараклӑ пулӑр, чараклӑхра чӑтӑмлӑ пулӑр, чӑтӑмлӑ
пулса Турра хисеплӗр, Турра хисеплесе
тӑванӑрсемпе туслӑ пулӑр, туслӑ пулса юратуллӑ
пулӑр. 8 Сирӗн ҫак пахалӑхсем пур пулсан, вӗсене
аталантарса пыратӑр пулсан, сирӗн Иисус Христос
Хуҫамӑра пӗлесси ӑнӑҫлӑ та усӑллӑ пулӗ. 9 Камӑн
ҫак пахалӑхсем ҫук, вӑл нимӗн те курмасть, суккӑр;
вӑл хӑйӗн ӗлӗкхи ҫылӑхӗсене каҫарнине те
астумасть. 10 Ҫавӑнпа та, тӑвансем, хӑвӑра Турӑ
чӗнсе, суйласа илнине ҫирӗплетмешкӗн тимлӗрех
тӑрӑшӑр: вара эсир нихӑҫан та такӑнмӑр. 11 Вара
Иисус Христос Хуҫамӑрӑн, Ҫӑлаканӑмӑрӑн ӗмӗрлӗх
Патшалӑхне кӗмелли алӑк сирӗншӗн яриех уҫӑлӗ.
12 Эсир ҫакна пӗлсе тӑратӑр, хӑвӑра пӗлтернӗ
чӑнлӑха ҫирӗп ӗненетӗр. Апла пулин те, эпӗ сире
ун ҫинчен астутарсах тӑмашкӑн пӑрахмӑп. 13 Чунӑм
кӗлеткемре чухне сире ҫине-ҫинех аса илтерсе
ыйхӑран вӑратни тӗрӗсех пулӗ тетӗп. 14 Мӗншӗн
тесен чунӑм часах кӗлеткемрен уйӑрӑлса каясса
эпӗ пӗлетӗп – ҫакна мана Иисус Христос Хуҫамӑр
уҫса пачӗ. 15 Эппин, эпӗ сирӗнтен уйӑрӑлса
кайсассӑн та ҫак сӑмахсем асӑртах упранччӑр тесе
тӑрӑшӑп.

### Христос мухтавӗ тата пророксен сӑмахӗсем

16 Эпир сире Иисус Христос Хуҫамӑрӑн хӑвачӗ
ҫинчен, Вӑл килни ҫинчен юмах юптарса мар, Унӑн
аслӑлӑхне хамӑр куҫпа хамӑр курнӑран каласа
патӑмӑр. 17 Мӗншӗн тесен Вӑл чап-мухтавне Атте
Турӑран илчӗ. Ҫавӑн чухне Ӑна ҫӳлти
мухтавлӑхран: «Ҫакӑ Манӑн савнӑ Ывӑлӑм, Манӑн
ырӑ кӑмӑлӑм Унра», – текен сасӑ илтӗнчӗ.
18 Тӳперен анакан ҫав сасса эпир Унпа пӗрле
сӑваплӑ ту ҫинче пулнӑ чухне илтрӗмӗр. 19 Ҫакӑ
пире пророксен сӑмахӗ чӑн пулнине тата хытӑрах
ӗнентерет. Эсир те пророксен сӑмахне ҫутаткӑҫ
вырӑнне хурса аван тӑватӑр. Вӑл тул ҫутӑлса
киличчен, чун-чӗрӗрсенче ирхи шуҫӑм ҫӑлтӑрӗ
тухиччен ҫутатать. 20 Анчах та ҫакна малтанах
пӗлсе тӑрӑр: Ҫырнинчи пророкла сӑмахсене никам
та хӑй тӗллӗн ӑнлантарса параймӗ. 21 Мӗншӗн
тесен пророкла сӑмах нихӑҫан та ҫын хӑй калас
тенипе каланмасть. Туррӑн сӑваплӑ ҫыннисем ӑна
Святой Сывлӑш хавхалантарнипе пӗлтереҫҫӗ.

### Суя пророксемпе суя вӗрентӳҫӗсем

2 Турӑ халӑхӗ хушшинче суя пророксем авалах
пулнӑ. Сирӗн хушшӑрта та ҫавнашкалах суя
вӗрентӳҫӗсем пулӗҫ. Вӗсем ҫынна пӗтерекен пӑсӑк
вӗрентӳсем сарӗҫ, хӑйсене хӑтарнӑ Хуҫа Турӑран
пӑрӑнса, хӑйсен пӗтеслӗхне хӑйсемех час тупӗҫ.
2 Нумайӑшӗ вӗсем астарнӑ хыҫҫӑн кайӗҫ, вӗсене
пула чӑнлӑх ҫулне хурлӗҫ. 3 Сире ултавлӑ сӑмахпа
ҫавӑрса вӗсем пуяс кӑмӑлне тултарӗҫ. Анчах та
вӗсене айӑплав хунӑ та ӗнтӗ, вӗсем пӗтесси инҫе
мар.
4 Турӑ ҫылӑха кӗнӗ ангелсене те хӗрхенмен-ҫке-ха,
суд кунӗнче айӑплав хуриччен сыхламашкӑн
вӗсене тӗттӗм тамӑк тыткӑнне панӑ. 5 Турра
хисеплеменнисен авалхи тӗнчине те Вӑл
хӗрхенмен, шыв илтернӗ. Турӑ ун чухне сакӑр чуна
кӑна – тӳрӗлӗх ӳкӗтлевҫи Нойпа унӑн кил-йышне
кӑна – упраса хӑварнӑ. 6 Турра хисеп
туманнисемшӗн ӳлӗмрен тӗслӗх пултӑр тесе, Вӑл
Содомпа Гоморра хулисене тӗп тумашкӑн
айӑпланӑ, ҫунтарса янӑ. 7 Анчах та Вӑл тӳрӗлӗхлӗ
Лота, виҫесӗр аскӑн ҫынсем хушшинче пурӑнса
йӑлӑхнӑскере, хӑтарнӑ. 8 (Мӗншӗн тесен вӗсен
йӗркесӗр ӗҫӗсене курса-илтсе пурӑннӑран ҫак тӳрӗ
ҫыннӑн таса чунӗ куллен асапланнӑ.) 9 Эппин, тӳрӗ
пурӑнакансене асапран епле упраса хӑвармаллине
те, йӗркесӗррисене суд кунӗнче айӑплав хуриччен
епле сыхламаллине те Хуҫамӑр пӗлет. 10 Ӳт-пӳ
хистенин пӑсӑклӑхӗ хыҫҫӑн каякансемпе, тӳпери
влаҫсене ним вырӑнне те хуманнисемпе мӗн
тумаллине вара Турӑ тата лайӑхрах пӗлет.

Çавнашкаллисем чăрсăрланма, кутăнлашма
юратаççĕ, çӳлти ангелсене хурлама та именмеççĕ.
11 Ангелсем вара, çынсенчен темĕн чухлĕ вăйлăрах,
хăватлăрах пулин те, вĕсем çинчен Хуçа Турă
умĕнче хурласа, айăпласа калаçмаççĕ. 12 Çав суя
вĕрентӳçĕсем хăйсем пĕлменнине хурлаççĕ. Вĕсем
– тытса вĕлерме кăна çуралнă, çут çанталăк
хистенипе кăна пурăнакан ăссăр тискер кайăк
евĕрлĕ; вĕсен, пăсăкскерсен, пĕтмелле пулĕ.
13 Йĕркесĕр ĕçĕсемшĕн вĕсене тавăру пулĕ. Вĕсем
кун çутинчех ĕçсе-асса пурăннине киленĕç теççĕ.
Вĕсем, намăса пĕлменскерсем, ыттисене те
ирсĕрлетеççĕ; вĕсем, сирĕнпе пĕрле ĕçсе-çисе,
хăйсен ултавлă киленĕçĕшĕн савăнса лараççĕ.
14 Вĕсен куçĕсем те ясарлăхпа, çылăха кĕрес
килнипе çунса тăраççĕ. Хавшак чунлисене çав
çынсем илĕртсе улталаççĕ. Вĕсем, çăткăн
чунлăскерсем, ылхан ачисем. 15 Вĕсем тӳрĕ çултан
пăрăнса, çĕтсе кайнă. Вĕсем Восор ывăлĕн
Валаамăн йĕрĕпех пыраççĕ. Валаама вара тӳрĕ мар
ĕçшĕн илес парне илĕртнĕ. 16 Анчах та ăна тăрă
шыв çине кăларнă: чĕлхесĕр ашак ами этем
чĕлхипе калаçа пуçланă та пророкăн ăссăрлăхне
чарнă.
17 Çав суя вĕрентӳçĕсем типĕ çăл пек, çил-тăвăл
хăвалакан пĕлĕт пек: вĕсем валли ĕмĕрлĕх сĕм-
тĕттĕм вырăн хатĕр. 18 Мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен
хăпартланчăк пуш сăмахĕсемпе йăнăш çул çинчен
анчахрах пăрăннисене ӳт-пӳ хистенин аскăнлăхне
çаклатаççĕ. 19 Суя вĕрентӳçĕсем вĕсене ирĕклĕх
сĕнеççĕ, хăйсем вара – ирсĕрлĕх чурисем. Этем
кама е мĕне пăхăнать, çавăн чури пулать. 20 Иисус
Христос Хуçамăра тата Çăлаканăмăра пĕлнипе
пĕрре çак тĕнче ирсĕрлĕхĕнчен хăтăлса тепре
каллех ун ăшне путакан, ирсĕрлĕхе пăхăнакан
çынсемшĕн кайранхи малтанхинчен те усалтарах
пулать. 21 Чăнлăх çулне пĕлсе тăнă çинчех вĕсем
каялла тавăрăнчĕç, хăйсене шанса панă таса пил-
хушусенчен пăрăнчĕç. Çапла хăтланни чăнлăх
çулне пачах пĕлменнинчен те начартарах. 22 «Йытă
хăй хăсăкĕ патне тавăрăнать», «Çуса тасатнă сысна
каллех пылчăк ăшĕнче йăваланма каять» текен
ваттисен сăмахĕсем питĕ тĕрĕс иккен! Вĕсем çавăн
пек хăтланаççĕ те.

### Христос тепре килесси

3 Савнă тăвансем! Ĕнтĕ сирĕн патăра иккĕмĕш
çыру çыратăп. Шухăшăрсем таса пулччăр тесе
хамăн çырусенче эпĕ сире çакăн пирки аса
илтерсех тăратăп: 2 сăвапла пророксем авалах
каланă сăмахсене тата апостолсем хăвăра вĕрентнĕ
Хуçамăрăн тата Çăлаканăмăрăн пил-хушăвĕсене
асра тытăр. 3 Пуринчен те ытларах вара çакна
пĕлсе тăрăр: юлашки кунсенче çылăхлă кăмăлĕсене
мала хуракан сĕмсĕр хурлавçăсем тупăнĕç.
4 «Христос тепре килме шантарнă. Ăçта-ха Вăл? Мăн
асаттесем вилме пуçланăранпах, тĕнче
пуçланнăранпах нимĕн те улшăнмасть, йăлтах
çаплипех юлать», – тейĕç вĕсем. 5 Çапла
шухăшлакансем Турă сăмахĕ чăн малтан тӳпене те,
çĕре те шывран тунине, шывпа пултарнине
пĕлмеççĕ, 6 пĕтессе те ун чухнехи тĕнче шыва путса
пĕтнĕ. 7 Туррăн сăмахĕпех тытăнса тăракан хальхи
тӳпепе çĕр вара вут валли упранать. Турра
хисеплемен çынсем суд кунĕнче вутра пĕтĕç.
8 Эй, савнă тăвансем! Çакна çеç нихăçан та ан
манăр: Хуçа Турăшăн пĕр кун та пин çул пек, пин
çул та пĕр кун пек анчах. 9 Хăшĕ-пĕрисем çапла
калаççĕ: Хуçамăр Хăй сăмах панине пурнăçлама
васкамасть. Ку васкаманни мар, пире хĕрхенсе
чăтни. Вăл никам та ан пĕттĕр, пурте ӳкĕнччĕр тесе
кĕтет. 10 Хуçамăрăн кунĕ çĕрлехи вăрă пек килсе
çитĕ. Çав кун тӳпе кĕр-кĕрлесе пĕтсе ларĕ, çут
çанталăкри тĕп пайрăмсем хыпса илсе арканĕç, çĕр
тата çĕр çинче этем туни пĕтĕмпех çунса кайĕ.
11 Енчен те пĕтĕмпех çапла пĕтмелле пулсан
хăвăрăн епле сăваплă, Турра хисеплесе
пурăнмалли çинчен шухăшлăр. 12 Туррăн кунĕ
килессе чăтăмсăррăн кĕтĕр. Çав кун вут хыпса илнĕ
тӳпе арканĕ, çут çанталăкăн тĕп пайрăмĕсем
ирĕлсе кайĕç. 13 Анчах та Турă шантарнă тăрăх эпир
çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕре кĕтетпĕр, унта тӳрĕлĕх пулĕ.
14 Çапла вара, савнă тăвансем, çакна кĕтсе, Турă
умне ирсĕрленмесĕр те çитменлĕхсĕр, çураçуллăн
тăрасчĕ тесе тăрăшăр. 15 Тата çакна астăвăр:
Хуçамăр хĕрхенсе чăтни пире çăлăнăç патне илсе
пырать. Турă панă ăс-хакăлпа ун пирки сирĕн
патăра савнă Павел тăванăмăр çырнăччĕ ĕнтĕ.
16 Ытти мĕн пур çырăвĕсенче те вăл çавăн çинченех
калать. Унăн çырăвĕсенче ăнланма йывăр
вырăнсем те пур. Çавăнпа та пĕли-пĕлми
калаçакан, çирĕп ĕненмен çынсем Павел
çырăвĕсене, Çырнинчи ытти вырăнсем пекех, пăсса
ăнлантараççĕ. Уншăн вĕсен пĕтмелле пулĕ. 17 Çапла
вара, савнă тăвансем, çаксем çинчен сире
малтанах систернĕ. Эппин, йĕркесĕр çынсен суйи
хыççăн каясран, хăвăра вĕрентнинчен пăрăнасран
асăрханăр. 18 Унтан та ытларах, Турă панă ырăлăхпа
аталансах пырăр, Иисус Христос Хуçамăра, хамăра
Çăлаканăмăра, пĕлнĕçемĕн пĕлсех пырăр. Ăна халĕ
те, ĕмĕрлĕх кунра та мухтав! Аминь.

# Иоанăн 1-мĕш

### Чĕрĕлĕх паракан Сăмах

1 Эпир сирĕн патăра чăн малтан пуçласах пулни
çинчен, хамăр илтни çинчен, куçăмăрсемпе
курни çинчен, аллăмăрсемпе тытса пăхни çинчен –
чĕрĕлĕх паракан Сăмах Турă çинчен – çырса
пĕлтеретпĕр. 2 Мĕншĕн тесен чĕрĕлĕх паракан
килчĕ, эпир ăна куртăмăр, курни-илтнине
çирĕплетсе пĕлтеретпĕр. Эпир сире Атте Турăри çав
ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх хамăр патăра килни çинчен
хыпарлатпăр. 3 Сирĕн пирĕнпе хутшăнса
пурăнмашкăн май пултăрччĕ тесе сире хамăр
курни-илтни çинчен хыпарлатпăр. Эпир вара Атте
Турăпа тата Унăн Ывăлĕ Иисус Христоспа
хутшăнатпăр. 4 Çак сăмахсене сирĕн савăнăçăр
тулли пултăрччĕ тесе çырса яратпăр.

### Турă вăл – çутăлăх

5 Акă, эпир Унран Хăйĕнчен илтнине сире
хыпарлатпăр: «Турă вăл – çутăлăх, Унра нимĕнле
тĕттĕмлĕх те çук». 6 Енчен те эпир хамăра Унпа
хутшăнура тăратпăр тетпĕр пулсан, хамăр вара
тĕттĕмрех çӳретпĕр пулсан, эппин эпир суятпăр,
чăнлăхпа пурăнмастпăр. 7 Енчен те эпир, Вăл
çутăра çӳренĕ евĕрлех, çутăра çӳретпĕр пулсан –
эппин пĕр-пĕринпе хутшăнса пурăнатпăр. Эппин
Унăн Ывăлĕн Иисус Христосăн Юнĕ пире тĕрлĕ
çылăхран тасатать. 8 Енчен те хамăра çылăхсăр
тетпĕр пулсан – эппин хамăра хамăр улталатпăр,
пирĕнте Ырă Хыпар чăнлăхĕ çук пулать. 9 Хамăр
çылăхсене йышăнатпăр пулсан – эппин шанчăклă
та тӳрĕлĕхлĕ Турă пирĕн çылăхсене каçарса, пире
тĕрлĕ тĕрĕсмарлăхран тасатать. 10 Енчен те эпир
хамăра çылăха кĕмен тетпĕр пулсан – эппин Турра
суеçĕ вырăнне хуратпăр, Унăн сăмахĕ пирĕн
чĕрене витермен пулать.

### Христос – пирĕн Хута кĕрекен

2 Эй, ачамсем! Эпĕ çакна эсир çылăха кĕресрен
çыратăп. Кам та пулин çылăха кĕрсессĕн вара
Атте Турă умĕнче пирĕн Хута кĕрекен пур. Вăл –
тӳрĕлĕхлĕ Иисус Христос. 2 Вăл – пирĕн
çылăхсемшĕн Турра кӳнĕ парнелĕх. Вăл Хăйĕн
пурăнăçне пирĕн çылăхсемшĕн кăна мар, пĕтĕм
тĕнче çылăхĕсемшĕн панă. 3 Эпир Ăна пĕлсе çитни
Унăн пил-хушăвĕсене тытса пынинчен курăнать.
4 «Эпĕ Ăна пĕлетĕп», – теекен, анчах хăй Унăн пил-
хушăвĕсене пăхăнса пурăнман çын – суеçĕ, унра
Ырă Хыпар чăнлăхĕ çук. 5 Кам Унăн сăмахне
пăхăнса пурăнать, çав çынра Турă юратулăхĕ
чăннипех те пулса çитнĕ. Хамăр Унпа килĕшӳллĕ
пулнине çавăнтан пĕлетпĕр те. 6 Хăйне Турăпа
пĕрлĕхлĕ теекенĕн Иисус пурăннă пек пурăнмалла.

### Çĕнĕ пил-хушу

7 Эй, савнă тăванăмсем! Сирĕн патăра çĕнĕ пил-
хушу çырса ямастăп. Вăл авалхи пил-хушăвах, ăна
сире ĕненме пуçласассăнах панă. Çав авалхи пил-
хушу сăмахне эпир ĕненме пуçласассăнах илтнĕ.
8 Апла пулин те, эпĕ çырни – çĕнĕ пил-хушу. Çав
сăмахсен чăнлăхĕ Христосра тата сирĕнте палăрчĕ,
мĕншĕн тесен тĕттĕмлĕх иртсе пырать, чăн çутă
çутата пуçларĕ. 9 Кам хăйне çутăлăхра çӳретĕп тет,
анчах ĕненекен тăванне юратмасть, çав
тĕттĕмлĕхрен тухман-ха. 10 Ĕненекен тăванне
юратакан çутăлăхра çӳрет, унра çылăха кĕресси çук.
11 Ĕненекен тăванне курайман çын вара тĕттĕмлĕх
ăшĕнче, тĕттĕмре çӳрет. Куçĕ тĕттĕмпе
суккăрланнăран вăл хăй ăçта кайнине те пĕлмест.
12 Эй, ачасем! Сирĕн çылăхăрсем Христос ячĕпе
каçарăннăран сирĕн патăра çыратăп. 13 Эй,
ашшĕсем! Эсир чăн малтан Пуррине пĕлнĕрен
сирĕн патăра çыратăп. Эй, çамрăксем! Эсир
шуйттана çĕнтернĕрен сирĕн патăра çыратăп. Эй,
ар çулне çитменнисем! Эсир Атте Турра пĕлнĕрен
сирĕн патăра çыртăм. 14 Эй, ашшĕсем! Эсир
Пуçламăшсăррине пĕлнĕрен сирĕн патăра çыртăм.
Эй, çамрăксем! Эсир ĕненӳре çирĕп пулнăран,
сирĕнте Турă сăмахĕ пулнăран, эсир шуйттана
çĕнтерме пултарнăран сирĕн патăра çыртăм.
15 Тĕнчене те, тĕнчере мĕн пуррине те ан юратăр.
Тĕнчене юратакан Атте Турра юратмасть.
16 Мĕншĕн тесен тĕнчере мĕн пурри йăлтах: ӳт-пӳ
хистени те, куç илĕртни те, пурăнан пурăнăçри
мăнкăмăллăх та – Атте Турăран мар, ку тĕнчерен.
17 Тĕнче те пĕтет, тĕнче илĕртĕвĕсем те пĕтеççĕ,
Турă ирĕкне пурнăçлакан вара ĕмĕр-ĕмĕр
пурăнать.

### Антихрист çинчен

18 Эй, ачамсем! Юлашки вăхăт çывхарать.
Антихрист килесси çинчен эсир илтнĕ. Юлашки
вăхăт çывхарнине эпир халĕ антихристсем
нумайланса кайнинчен пĕлетпĕр. 19 Вĕсем хамăр
хушшăмăртанах тухрĕç, анчах вĕсем нихăçан та
пирĕннисем пулман: вĕсем пирĕннисем пулсассăн,

пирĕнпех юлĕччĕç. Анчах вĕсем пирĕн йышран
тухрĕç, çапла майпа вĕсем пуртех те пирĕннисем
марри палăрчĕ. 20 Тепĕр тесен, Хăйĕн Сывлăшне
Паракан сире суйласа илнĕ, чăнлăха эсир хăвăрах
пĕлетĕр. 21 Эпĕ сирĕн патăра эсир чăнлăха
пĕлменрен çырмастăп. Эсир чăнлăха та, чăнлăх суя
çуратманнине те пĕлетĕр. 22 Иисус вăл Турă Суйласа
илни пулнине йышăнман çын та суеçĕ пулмасан,
тата кам суеçĕ пулĕ? Çавнашкал çын – антихрист.
Вăл Атте Турра та, Ывăлне те йышăнмасть.
23 Ывăлне йышăнман çыннăн Ашшĕ те çук. Ывăлне
ĕненекенĕн вара Ашшĕ пур. 24 Çапла вара, эсир
ĕненме пуçласанах мĕн илтнĕ, çавă сирĕнтех
юлтăр. Илтни сирĕнте юлсассăн вара эсир Ывăлĕпе
те, Ашшĕпе те хутшăнса пурăнăр. 25 Вăл пире
ĕмĕрлĕх пурăнăç пама шантарнă.
26 Сире илĕртсе улталас текенсем пур пирки эпĕ
çакна çыртăм та. 27 Тепĕр тесен, сире Вăл Хăй çу
сĕрсе суйласа илнĕ. Çавă сирĕнтех юлĕ. Сире кам та
пулин вĕрентни кирлĕ мар. Çу сĕрсе суйласа илни
вара суя мар, чăн. Çав чăнни хăех сире пурин
çинчен те вĕрентет. Эппин вăл сире мĕне
вĕрентнине тытса пурăнăр.

### Турă ачисем

28 Çапла вара, ачамсем, Турă Суйласа илни
килсессĕн, Ун умĕнче çирĕп кăмăллăн та
намăсланмасăр тăрас тесен, Унăн вĕрентĕвĕпе
пурăнăр. 29 Вăл тӳрĕ пулнине эсир пĕлетĕр пулсан
çакна та пĕлсе тăрăр: кашни тĕрĕс тăваканах Унран
çуралнă; Турă ачи пулать.
3 Курăр-ха, Атте Турă пире епле юратать. Вăл
пире Турă ачисем пулма, çав ята тивĕçлĕ пулма
ирĕк панă. Анчах та тĕнче, Турра пĕлмен пирки,
пире те йышăнмасть. 2 Эй, савнă тăвансем! Эпир
ĕнтĕ Турă ачисем, анчах та хамăр малашлăха
пĕлместпĕр-ха. Пĕр çакна кăна пĕлетпĕр: çав вăхăт
çитсен эпир Ун евĕрлĕ пулăпăр, мĕншĕн тесен Вăл
мĕнлине курăпăр. 3 Ăна шанса пурăнакан кашни
çынах, Христос пек таса пуласчĕ тесе, хăйне
тасатать.
4 Çылăха кĕрекен кашни çынах Турă йĕркине
пăсать, мĕншĕн тесен çылăх вăл – Турă йĕркине
пăсни. 5 Христос пирĕн çылăхсене Хăй çине
илмешкĕн килнине, Унра çылăх çуккине эсир
пĕлетĕр ĕнтĕ. 6 Ăна ĕненсе пурăнакан çылăха
кĕмест. Çылăха кĕрекен вара Ăна пĕлмест. 7 Эй,
ачамсем! Сире никам та илĕртсе ан улталатăр. Кам
тӳрĕлĕхлĕ ĕç тăвать, çав Унашкалах тӳрĕлĕхлĕ.
8 Кам çылăха кĕрет, çав вара шуйттанăн, мĕншĕн
тесен малтан шуйттан çылăха кĕнĕ. Шуйттан
ĕçĕсене путлантарма килнĕ те ĕнтĕ Турă Ывăлĕ.
9 Турă ачи пулма тивĕçни çылăха кĕмест, мĕншĕн
тесен унăн чун-чĕринче Турă акса хăварни пур.
Турă ачи пулнăран вăл çылăха кĕме те
пултараймасть. 10 Турă ачисемпе шуйттан ачисене
çакăнтан пĕлмелле: ырă ĕç туман, çавнашкалах
тăванне юратман çын Турă ачи мар.

### Пĕр-пĕрне юратăр

11 Пирĕн пĕр-пĕрне юратмалла тенине эсир
ĕненме пуçласанах илтнĕ. 12 Пирĕн Каин пек пулас
марччĕ. Вăл, шуйттанăн пулнăран, хăйĕн
пĕртăванне вĕлернĕ. Мĕншĕн вĕлернĕ-ха вăл ăна?
Мĕншĕн тесен хăйĕн ĕçĕсем усал пулнă,
пĕртăванĕн ĕçĕсем вара тӳрĕ пулнă. 13 Эй,
тăванăмсем! Тĕнче хăвăра кураймасан ан тĕлĕнĕр.
14 Ĕненекен тăвансене юратнăран эпир вилĕмрен
чĕрĕлĕхе куçнине пĕлетĕр. Тăванне юратман
çыннăн чунĕ вилĕм тыткăнĕнче. 15 Тăванне
кураймасăр пурăнакан вăл – çын вĕлерекен. Кирек
епле çын вĕлерекен те хăй ăшĕнчи ĕмĕрлĕх
пурăнăçа пĕтерет. 16 Юратулăх мĕнне эпир
пĕлетпĕр: Христос пирĕншĕн чунне панă, пирĕн те
тăвансемшĕн чуна пама хатĕр пулмалла. 17 Çак
тĕнчере çителĕклĕ пурăнакан çын тертленекен
тăванне хĕрхенмест пулсан, унра епле Турă
юратулăхĕ пулайтăр? 18 Эй, ачамсем! Сăмахпа е
чĕлхепе юратар мар, ĕçпе тата чăнлăхпа юратар.
19 Турă умĕнче чĕремĕрсене лăплантарса, хамăр
чăнлăх енче пулнине акă мĕнрен пĕлĕпĕр. 20 Енчен
те хамăр чун-чĕре хамăрах айăплать пулсан, Турă
мĕн чухлĕ ытларах айăплĕ! Мĕншĕн тесен Турă
пирĕн чĕререн аслăрах, Вăл йăлтах пĕлет. 21 Эй,
савнă тăвансем! Енчен те хамăр чун-чĕре хамăра
айăпламасть пулсан, эпир Турă умне хăюллăнах
тăма пултаратпăр. 22 Мĕн ыйтнине Турă пире
пĕтĕмпех парĕ, мĕншĕн тесен эпир Унăн пил-
хушăвĕсене тытса пыратпăр, Ăна юрăхлă ĕçсем
тăватпăр. 23 Унăн пил-хушăвĕ вара çапла: пирĕн,
Хăй хушнă пек, Унăн Ывăлне Иисус Христоса
ĕненмелле, пĕр-пĕрне юратмалла. 24 Унăн пил-
хушăвĕсене тытса пыракан çын Турăра пулать, Турă
та çав çынра пулать. Турă хамăрта пулнине вара
эпир Вăл пире панă Сывлăш тăрăх пĕлетпĕр.

### Турă Сывлăшĕ тата антихрист сывлăшĕ

4 Эй, савнă тăвансем! Турă Сывлăшĕллĕ текен
кирек епле çынна та ан ĕненĕр. Малтан
тĕрĕслесе пăхăр: çав сывлăш Турăран-и? Мĕншĕн
тесен тĕнчере суя пророк нумайланса кайрĕ. 2 Турă
Сывлăшне тата аташтаракан сывлăша çапла майпа
уйăрса илĕр: Иисус – ӳтленсе килнĕ Турă Ывăлĕ
пулнине йышăнакан кирек епле Сывлăш та –
Турăран. 3 Иисус – çĕр çине ӳтленсе килнĕ Турă
Ывăлĕ пулнине йышăнман кирек епле сывлăш та –
Турăран мар, вăл антихрист сывлăшĕ. Антихрист
килесси çинчен эсир илтнĕ, антихрист тĕнчене
килнĕ те ĕнтĕ. 4 Эй, ачамсем! Эсир – Туррăн, эсир
суя пророксене çĕнтертĕр, мĕншĕн тесен сирĕнти
Турă Сывлăшĕ тĕнчери ытти сывлăшсенчен
хăватлăрах. 5 Суя пророксем – тĕнченĕн, вĕсем
тĕнче ăнланмалла калаçаççĕ те – тĕнче вĕсене
итлет. 6 Эпир – Туррăн. Турра пĕлекен пире итлет.
Кам Туррăн мар, çав пире итлемест. Чăнлăх

Сывлăшне аташтаракан сывлăшран çапла майпа
уйăрса илетпĕр те.

### Турă вăл – юратулăх

7 Эй, савнă тăвансем! Пĕр-пĕрне юратар, мĕншĕн
тесен юратулăх Турăран килет. Юратакан çын –
Турă ачи, вăл Турра пĕлет. 8 Юратман çын Турра
пĕлмест, мĕншĕн тесен Турă вăл юратулăх. 9 Турă
пире юратни çакăнтан палăрать: Ывăлĕ урлă пирĕн
чĕрĕлĕх илмелле пултăр тесе Турă тĕнчене Хăйĕн
пĕртен-пĕр Ывăлне янă. 10 Чăн юратулăх – эпир
Турра юратни мар, Турă пире юратни. Пире
юратнăран ĕнтĕ Турă Хăйĕн Ывăлне çĕр çине ярса
пирĕн çылăхсемшĕн парнелĕхе кӳнĕ. 11 Эй, савнă
тăвансем! Турă пире çав териех юратать пулсан,
пирĕн те пĕр-пĕрне юратмалла. 12 Турра никам та
нихăçан та курман. Анчах та эпир пĕр-пĕрне
юратсан Турă пирĕн чунра пулать, Турă юратулăхĕ
пирĕн ăшра тулли пулать.
13 Хамăр Унра пулнине, Вăл та пирĕнте пулнине
Турă пире Хăйĕн Сывлăшĕн ырăлăхĕсене панинчен
пĕлетпĕр. 14 Атте Турă Хăйĕн Ывăлне тĕнчене
Çăлакан пулмашкăн янă, çавна эпир куçăн
курнăран çирĕплетсе пĕлтеретпĕр. 15 Иисуса Турă
Ывăлĕ тесе йышăнакан çынра Турă пулать, çынни
те Турăра пулать. 16 Турă пире епле юратнине эпир
пĕлтĕмĕр, çав юратулăха ĕнентĕмĕр. Турă вăл
юратулăх, çавăнпа та юратуллă пурăнакан çын
Турăра пулать, Турă та çав çынра пулать. 17 Ĕнтĕ
пирĕн ăшăмăрсенчи юратулăх чи паха шая çитрĕ.
Çавăнпа та, эпир тĕнчере Вăл пурăннă пек
пурăннăран, суд кунĕнче çирĕп кăмăллă пулăпăр.
18 Юратулăхра хăрани çук, тулли юратулăх
хăранине пĕтерет, мĕншĕн тесен хăрани вăл –
çитес айăплав çинчен шухăшлани. Хăракан туллин
юратма пултараймасть. 19 Турă пире маларахран
юратнă, çавăнпа та Ăна юратар. 20 Эпĕ Турра
юрататăп текен, ĕненекен тăванне курайман çын –
суеçĕ. Куçкĕретĕн курăнакан тăванне юратман çын
курăнман Турра епле юратайтăр? 21 Турă пире çакăн
пек пил-хушу панă: Турра юратакан хăй тăванне те
юраттăр.

### Ĕненни – тĕнчене çĕнтерни

5 Иисус вăл Турă Суйласа илни пулнине
ĕненекен кашни çынах Турă ачи пулать. Çапла
вара, Çӳлти Ашшĕне юратакан Унран Çуралнине те
юратать. 2 Эпир Турă ачисене юратни çакăнтан
палăрать: эпир Турра юрататпăр, Унăн пил-
хушăвĕсене тытса пыратпăр. 3 Турă пил-хушăвĕсене
тытса пыни Ăна юратни пулать те. Унăн пил-
хушăвĕсем вара йывăрах та мар. 4 Турăран çуралнă
кашни çын тĕнчене çĕнтерет. Тĕнчене çĕнтернĕ çав
çĕнтерӳ хăвачĕ – пирĕн ĕненӳ. 5 Иисус вăл Турă
Ывăлĕ тенине ĕненекен тĕнчене çĕнтермесен, урăх
кам çĕнтерейĕ?

### Турă Ывăлĕ çинчен çирĕплетсе пĕлтерни

6 Иисус Христос Вăл пирĕн пата шывпа юн урлă,
Сывлăш пĕлтерсе çирĕплетнипе килнĕ. Вăл шывпа
тĕне кĕрсе кăна мар, хĕрес çинче юн юхтарса
килнĕ. Çавăн çинчен Сывлăш çирĕплетсе пĕлтерет,
мĕншĕн тесен Сывлăш вăл чăнлăх. 7 Çавăн çинчен
тӳпере виççĕн çирĕплетсе калаççĕ: Атте Турă, Сăмах
Турă тата Святой Сывлăш. Çаксем виççĕшĕ те – пĕр.
8 Çавăн çинчен çĕр çинче те виççĕн çирĕплетсе
калаççĕ : Святой Сывлăш парнисем, шыв тата юн.
Çаксем виççĕшĕ те пĕрешкелех калаcа пĕлтереççĕ.
9 Енчен те эпир çынсем çирĕплетсе каланине
йышăнатпăр пулсан, паллах, Турă çирĕплетсе
калани чылай хăватлăрах. Мĕншĕн тесен ăна Турă
Хăйĕн Ывăлĕ çинчен каланă. 10 Турă Ывăлне
ĕненекенĕн вара çав çирĕплетсе калани ăшра
упранать. Турă çирĕплетсе пĕлтернине ĕненмен
çын Турă Хăйĕн Ывăлĕ çинчен калаcа пĕлтернине
ĕненмест. Çапла майпа вăл Турра суеçĕ вырăнне
хурать. 11 Çирĕплетсе калани вара çакă: Турă пире
ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх панă, çав чĕрĕлĕх çăлкуçĕ –
Ывăлĕнче. 12 Христоса Турă Ывăлĕ тесе
йышăнаканăн çав чĕрĕлĕх пур, Турă Ывăлĕ тесе
йышăнман çыннăн вара – çук.

### Пире ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх панă

13 Эпĕ сирĕн патăра, Турă Ывăлне ĕненекенсем
патне, çакна çырса яратăп: Турă Ывăлне ĕненсен
ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пуласса пĕлсе тăрăр. 14 Çавăнпа
та эпир Турă умĕнче хамăра çирĕп кăмăллă
тыткалатпăр: эпир Унран, Хăй вĕрентнĕ пек, кирек
мĕн ыйтсассăн та, Вăл пире итлет. 15 Кирек мĕн
ыйтсассăн та, Вăл пире итлессе пĕлетпĕр пулсан,
хамăр Унран мĕн ыйтнине йăлтах илессе те
пĕлетпĕр.
16 Кам ĕненекен тăванĕ вилĕм кӳмен çылăха
кĕнине курать, çав тăванĕшĕн кĕлтутăр. Турă вара
ăна чĕрĕлĕх парĕ. Çакна эпĕ вилĕм кӳмен çылăха
кĕнисем пирки калатăп. Анчах та вилĕм кӳрекен
çылăха кĕрекенсем те пур. Сирĕн вĕсемшĕн те
кĕлтумалла теместĕп эпĕ. 17 Кирек епле усал ĕç те
çылăх, анчах та вилĕм кӳмен çылăх та пур.
18 Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Турă ачи пулма тивĕçнĕ çын
çылăха кĕмест. Турă ачи хăйне хăй упраса
пурăнать, шуйттан ун çумне çулăхаймасть. 19 Эпир
хамăр Турă ачисем пулнине, пĕтĕм тĕнче усаллăх
ăшĕнче пулнине пĕлетпĕр. 20 Эпир тата çакна та
пĕлетпĕр: Турă Ывăлĕ килчĕ те, чăн Турра пĕлччĕр
тесе, Унăн чăн Ывăлĕпе Иисус Христоспа пĕрлĕхлĕ
пулччăр тесе, пире çутă та, ăс-хакăл та пачĕ. Вăл –
чăн Турă, Вăл – ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх. 21 Эй, ачамсем!
Кĕлеткесене пуççапасран асăрханса пурăнăр.
Аминь.

# Иоанăн 2-мĕш

## Çăлăнăç

1 Ватă çынран – хисеплĕ хĕрарăмпа унăн ачи-
пăчи патне. Эпĕ сире чăнласах юрататăп. Сире
эпĕ кăна мар, чăнлăхпа пурăнакансем пурте
юратаççĕ. 2 Эпир хамăр ăшăмăрсенчи чăнлăха пула
юрататпăр. Çав чăнлăх ĕмĕрех пирĕнте пулĕ.
3 Сире, чăнлăхпа тата юратулăхпа пурăнакансене,
Атте Турăран тата Унăн Ывăлĕнчен Иисус Христос
Хуçамăртан ырăлăх, тивлет, канăçлăх пултăр.

## Чăнлăх тата юратулăх

4 Санăн хăш-пĕр ачусем, Атте Турă хушнă пек,
чăнлăх çулĕпе кайнине пĕлсен, эпĕ питĕ савăнтăм.
5 Халĕ вара, хисеплĕ хĕрарăм, санăн патна темле
çĕнĕ пил-хушу мар, хамăр ĕненме пуçласанах
пĕлнĕ пил-хушăва çырса яратăп: пĕр-пĕрне
юратăр! 6 Юратни вăл – Турă пил-хушăвĕсене тытса
пурăнни. Хăвăр ĕненме пуçласан илтнĕ пекех, ку
пил-хушу сире юратса пурăнма хушать. 7 Мĕншĕн
тесен тĕнчере ултавçăсем нумайланчĕç. Вĕсем
Иисус Христос çĕр çине ӳтленсе килнине
йышăнмаççĕ. Çавнашкал çын вăл – илĕртсе
улталакан, антихрист. 8 Хамăр мĕншĕн тăрăшнине
çухатас марччĕ тесе, тулли сăвап илесчĕ тесе,
хăвăра хăвăр асăрханса пурăнăр. 9 Христос
вĕрентĕвне пăсакан, çав вĕрентӳпе пурăнман
кашни çынах Турăсăр тăрса юлать. Христос
вĕрентĕвĕпе пурăнаканăн Ашшĕ те, Ывăлĕ те пур.
10 Кам та кам сирĕн патăра çав вĕрентĕве мар,
урăххине вĕрентме пырать, ăна килĕре те ан
кĕртĕр, хапăл ан тăвăр. 11 Мĕншĕн тесен унашкал
çынна хапăл туни унăн усал ĕçне хутшăнниех
пулать.

## Юлашкинчен калани

12 Манăн сирĕн патăра çырса ямалли нумай,
анчах та хут çине чернилпа çырнипех çырлахассăм
килмест. Сирĕн патăра хам пырса çитессе,
савăнмалăх куçа-куçăн курса калаçасса шанатăп.
13 Турă суйласа илнĕ пĕртăванун ачисем сана салам
калаççĕ. Аминь.

# Иоанăн 3-мĕш

### Саламлани

1 Ватă çынран – савнă Гай патне. Эпĕ сана
чăнласах юрататăп. [2] Савнă тăванăм! Эпĕ санăн
сывлăхушăн кĕлтăватăп, чуну ырăланса пынăçемĕн
санăн пурне те ăнăçтарса пымалла пултăрччĕ
тетĕп. [3] Ĕненекен тăвансем эсĕ Турă чăнлăхне
чунпа парăнни çинчен килсе каласа кăтартрĕç те,
эпĕ питĕ савăнтăм. [4] Ачамсем чăнлăхпа çӳреççĕ
тени мана пуринчен те ытла савăнтарать.

### Пĕр-пĕрне пулăшасси тата чăрмавсем

[5] Савнă тăванăм! Эсĕ ĕненекен тăвансемшĕн,
уйрăммăнах çул çӳрекеннисемшĕн, тăрăшса чăн-
чăн Христос çынни пек тăватăн. [6] Вĕсем
ĕненекенсем умĕнче сан юратулăху çинчен
çирĕплетсе пĕлтерчĕç. Эсĕ вĕсене, Турра юрăхлă
пек, çул çине лайăх пуçтарса-хатĕрлесе яр.
[7] Мĕншĕн тесен вĕсем урăх халăх çыннисенчен
нимĕн илмесĕрех Христос çинчен вĕрентме çула
тухса кайнă. [8] Çапла ĕнтĕ пирĕн, чăнлăхшăн
тăрăшакансене пулăшас тесен, унашкаллисене
хапăл тăвас пулать.
[9] Ĕненекен ушкăнрисем патне эпĕ çыру çырса
ятăм, анчах та вĕсен пуçлăхĕ Диотреф, хуçаланма
юратаканскер, пире йышăнмасть. [10] Çавăнпа та эпĕ,
пырас пулсассăн, вăл мĕн хăтланса пурăнни çинчен
аса илтерĕп. Вăл пире усал сăмахсем каласа
хăртать. Унпа та çырлахмасть-ха: вăл ĕненекен
тăванăмăрсене хăй те йышăнмасть, йышăнас
текенсене те чарать. Кам çул çӳрекен
тăванăмăрсене хапăл тăвать, çавсене Диотреф
чиркӳрен хăваласа ярать.
[11] Савнă тăванăм! Усаллинчен мар, ырринчен
тĕслĕх ил. Ырă тăвакан çын вăл Турăран, усал
тăвакан вара Турра пĕлмест. [12] Димитрий çинчен
пурте лайăхпа кăна асăнаççĕ, чăнлăх хăй ун çинчен
каласа çирĕплетет. Ун çинчен эпир те шантарсах
калатпăр, эпир çирĕплетни чăн пулнине эсир хăвăр
та пĕлетĕр.

### Юлашкинчен калани

[13] Манăн сирĕн патăра çырса ямалли нумай,
анчах та чернилпа, çыркăчпа çырнипех çырлахас
килмест. [14] Сан патна çитсе куçа-куçăн курса
калаçасса шанатăп. [15] Канăçлăх пултăр сана!
Тусусем сана салам яраççĕ, эсĕ те тусăмăрсене
ятран салам кала. Аминь.

# Иуда çырăвĕ

### Саламлани

1 Иисус Христос чуринчен, Иаковпа пĕртăван
Иудăран – Атте Турă сăвапласа тасатнипе,
Иисус Христос упранипе пурăнакан чĕнсе
илнисене. 2 Сире нумай-нумай ырăлăх, канăçлăх,
юратулăх сунатăп.

### Суя вĕрентӳçĕсене айăплав пуласси

3 Савнă тăванăмсем! Сирĕн патăра пурте
çăлăнасси çинчен манăн питĕ çырассăм килетчĕ.
Анчах та эпĕ сирĕн патăра Турă Хăйĕн халăхне
пĕрре тата яланлăха панă ĕненӳшĕн кĕрешме
ӳкĕтлесе çырас терĕм. 4 Мĕншĕн çырас терĕм-ха?
Мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕрисем сирĕн хушшăра
вăрттăн шăвăнса кĕчĕç. Унашкаллисене айăплав
пуласси çинчен Çырнинче тахçанах каланă. Турра
хисеплемен çав çынсем Турă панă ырăлăха пула
тем тума та юрать теççĕ. Хăйсем вара пĕртен-пĕр
Патша Турра, Иисус Христос Хуçамăра йышăнмаççĕ.
5 Çакна эсир пĕлетĕр пулин те, татах асилтерес
тетĕп: Хуçа Турă Хăйĕн халăхне Египет çĕрĕнчен
илсе тухса çăлса хăварнă, анчах та ĕненес
теменнисене кайран пĕтернĕ. 6 Тата хăйсен
тивĕçлĕхне упраса хăварайман, хăйсен
вырăнĕнчен пăрахса кайнă ангелсем çинчен
асилтерес тетĕп. Турă вĕсене аслă суд кунĕ валли
ĕмĕрлĕх сăнчăрта, сĕм-тĕттĕмре усрать. 7 Тата эпĕ
сире Содомпа Гоморра хулисем çинчен, çак
хуласем пекех çут çанталăка хирĕçлесе асса
пурăнакан таврари ытти хуласем çинчен асилтерес
тетĕп. Вĕсенчен тĕслĕх илекен ан пултăр тесе Турă
вĕсем çине сӳнми вут асапне янă. 8 Ӳт-пĕве
ирсĕрлентерекен, çӳлти пуçлăхсене йышăнман,
çӳлти вăйсене хурлакан çав суя вĕрентӳçĕсемпе те
çаплах пулĕ. 9 Моисей вилсессĕн унăн ӳчĕ пирки
шуйттанпа тавлашнă чухне Михаил Архангел
шуйттана айăплама хăяйман: «Хуçа Турă чартăрах
сана», – тенĕ çеç. 10 Ку çынсем вара хăйсем пач
пĕлменнине хурлаççĕ. Вĕсем, ăссăр выльăхла, ӳт-пӳ
хистенине кăна пĕлеççĕ, çавă вĕсене тĕп тăвать те.
11 Хуйхă пулĕ вĕсене! Вĕсем Каин çулĕпех пыраççĕ,
мула хапсăнса Валаам пек улталанаççĕ, Корей пек
кутăнлашсах пĕтеççĕ. 12 Сирĕн юратулăх сăйĕ
вăхăтĕнче вĕсем ыттисене çылăха кĕртеççĕ. Вĕсем
сирĕнпе пĕрле чухнех намăс-симĕсе пĕлмесĕр
хăйсен хырăмĕшĕн кăна тăрăшаççĕ. Вĕсем – çил
хăвалакан пуш пĕлĕтсем пек. Вĕсем – çимĕç кӳмен,
кăкланнă кĕрхи йывăçсем пек, çав йывăçсене икĕ
хут хăрнă теме пулать. 13 Вĕсем – хăйсен
намăссăрлăхĕпе кăпăкланакан тискер тинĕс
хумĕсем. Вĕсем – сĕм тĕттĕмлĕхре яланлăха çĕтсе
кайнă çăлтăрсем.
14 Адамран çиччĕмĕш сыпăкри Енох
унашкаллисем çинчен пророкла çапла каланă:
«Акă, Хуçамăр Хăйĕн святой пин-пин ангелĕпе
килет. 15 Вăл пурне те суд тума, Турра юрăхсăр мĕн
пур ĕçĕсемшĕн тата Турра хирĕç каланă мĕн пур
хаяр сăмахĕсемшĕн Хăйне хисеплемен çылăхлă
çынсене айăплама килет». 16 Вĕсем яланах
ӳпкелешеççĕ, нăйкăшаççĕ, Турра хисеплемесĕр тата
Турă йĕркине пăсса ӳт-пӳ хистени хыççăн каяççĕ,
мăнкăмăллăн калаçаççĕ, хăйсене усăллă чухне
йăпăлтатма та именмеççĕ.

### Асăрхаттарни тата чĕнсе калани

17 Эсир вара, савнă тăванăмсем, Иисус Христос
Хуçамăрăн апостолĕсем малтанах каласа хунă
сăмахĕсене асра тытăр. 18 «Юлашки вăхăтсенче, –
тенĕ апостолсем, – хăйсен çылăхлă кăмăлĕсене
тултаракан хурлавçăсем тупăнĕç». 19 Çав çынсем
пĕрлĕхлĕ ĕненӳрен уйăрăлаççĕ. Вĕсен чун-чĕмĕ
çук, ӳт-пӳ хистени кăна пур. 20 Эсир вара, савнă
тăванăмсем, сăваплă ĕненӳре хăвăра çирĕплетĕр,
Святой Сывлăшпа килĕшӳллĕн кĕлтăвăр. 21 Хăвăра
Турă юратнине астуса пурăнăр, ырăлăхлă Иисус
Христос Хуçамăр ĕмĕрлĕх пурăнăç парасса кĕтĕр.
22 Пĕрисене, ĕненӳ пирки иккĕленекенсене,
хĕрхенсе ӳкĕтлĕр. 23 Теприсене, ĕмĕрлĕх вутпа
хăратса, вутран туртса кăларăр, çăлса хăварăр.
Виççĕмĕшсене вара асăрханса питлемелли кăна
юлать. Вĕсен çылăхлă ӳт-пĕвĕпе вараланнă
тумтирĕнчен те йĕрĕнĕр.

### Пиллени

24 Сире ӳкесрен упраса хăварма, çитменлĕхсĕр те
савăклăскерсене Хăйĕн мухтавĕ умне тăратма
пултаракан, 25 Иисус Христос Хуçамăр урлă хамăра
Çăлакан, Пĕртен-пĕр Ăслăран та Ăслă Турă
ĕмĕрсемччен те, халĕ те, ĕмĕр-ĕмĕрех мухтавлă,
аслă, хăватлă, вăйлă пултăр. Аминь.

# Апокалипсис

### Çак кĕнеке çинчен

1 Малашлăхра часах мĕн пулассине Хăйĕн
чурисене кăтартас тесе, Турă Иисус Христоса
малашнехине уçса панă. Çăвна Вăл Хăйĕн ангелĕ
урлă Хăйĕн чурине Иоана кăтартнă. 2 Иоанн вара
Турă Сăмахĕ çинчен, Иисус Христос çирĕплетсе
калани çинчен тата хăй мĕн-мĕн курни-илтни
çинчен каласа пĕлтернĕ. 3 Çак пророкла сăмахсене
вулакан, вĕсене итлекенсем тата унта мĕн çырнине
тытса пурăнакансем телейлĕ, мĕншĕн тесен вăхăт
çывăх ĕнтĕ.

### Çичĕ чиркĕве салам яни

4 Асири çичĕ чиркĕве – Иоанран: сире Пурринчен,
Пулнинчен, Пулассинчен, Унăн престолĕ умĕнчи
çичĕ сывлăшран тата Иисус Христосран ырăлăхпа
канăçлăх пултăр. Иисус çирĕплетсе пĕлтерни чăн.
Вăл – вилнисенчен чи малтан чĕрĕлсе тăнăскер,
çĕр çинчи патшасемпе хуçаланаканскер. Вăл пире
юратнăран Хăйĕн Юнĕпе пирĕн çылăхсенчен
хăтарнă, 6 Хăйĕн Ашшĕ, Туррăмăр, умĕнче пире
патшалла священниксем тунă. Вăл ĕмĕр-ĕмĕрех
мухтавлă та хăватлă пултăр! Аминь. 7 Акă, Вăл
пĕлĕтсем çинче килĕ те, Ăна пурте, çав шутрах
Хăйне пăталаса сăнăпа чикнисем те, курĕç. Çĕр
çинчи мĕн пур йăхсем Унăн умĕнче татăлса йĕрĕç.
Çапла пулĕ, аминь. 8 «Эпĕ – Альфа тата Омега ,
пуçламăшĕ тата вĕçĕ, – тет Хуçамăр. – Эпĕ – Пурри
те, Пулни те, Пуласси те, Пурне те тытса тăракан».

### Христос курăнни

9 Эпĕ, Иоанн тăванăр, Иисус Христосăн
патшалăхне кĕрес тесе, Вăл тӳснĕ пек асапа
сирĕнпе пĕрле тӳсетĕп. Мана Турă Сăмахне
вĕрентнĕшĕн, Иисус Христос çинчен çирĕплетсе
пĕлтернĕшĕн Патмос утравĕ çине ячĕç.
10 Пĕррехинче, вырсарни кун, Святой Сывлăш
витĕмĕпе эпĕ хам хыçăмра труба сасси пек хăватлă
сасă илтрĕм. «Эпĕ – Альфа тата Омега, Малтанхи
тата Кайранхи , – терĕ çав сасă. 11 – Хăвна мĕн
курăннине йăлтах кĕнекелесе çыр та Асири
чиркӳсене: Ефеса та, Смирнăна та, Пергама та,
Фиатирăна та, Сардиса та, Филадельфине те,
Лаодикине те яр». 12 Хампа калаçаканни кам сасси-
ши тесе, эпĕ хыçалалла çавăрăнса пăхрăм. Вара,
çавăрăнса пăхсан, çичĕ ылтăн çутаткăç куртăм.
13 Çутаткăçсем хушшинче Этем Ывăлĕ евĕрлĕскер
тăратчĕ. Хăй вăрăм тум тăхăннă, кăкăр урлă ылтăн
хăю çыхнă. 14 Пуçĕ те, çӳçĕ те Унăн шурă çăм пек, юр
пек шап-шурăччĕ, куçĕсем вут çулăмĕ евĕрччĕ.
15 Урисем Унăн шăранса тăракан пăхăр пекчĕ, сасси
шыв кĕрлени пекчĕ. 16 Сылтăм аллине Вăл çичĕ
çăлтăр тытнăччĕ, çăварĕнчен ик енĕ те çивĕч хĕç
тухса тăратчĕ, сăнĕ-пичĕ вара Унăн хĕртсе пăхакан
хĕвелччĕ.
17 Ăна курсассăнах эпĕ Унăн ури умне вилнĕ пек
ӳкрĕм. Вара Вăл ман çине сылтăм аллине хурса
çапла карарĕ: «Ан хăра. Эпĕ – Малтанхи те,
Кайранхи те. 18 Эпĕ – чĕрĕ. Эпĕ вилнĕччĕ, акă,
курсам: Эпĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнатăп, аминь.
Тамăкпа вилĕм çăраççисем те Манра. 19 Ĕнтĕ ху мĕн
курнине, мĕн пуррине тата çакăн хыççăн мĕн
пулассине çырса хур. 20 Эсĕ Манăн аллăмра курнă
çичĕ çăлтăр тата çичĕ çутаткăç акă мĕне
пĕлтереççĕ: çичĕ çăлтăр вăл – çичĕ чиркĕвĕн
ангелĕсем, эсĕ курнă çичĕ çутаткăç вара – çичĕ
чиркӳ».

### Ефесри чиркĕве янă çыру

2 «Ефес чиркĕвĕн ангелне çырса яр: „Хăйĕн
сылтăм аллинче çичĕ çăлтăр Тытса тăракан,
çичĕ ылтăн çутаткăç хушшинче Çӳрекен çапла
калать, те: 2 Санăн ĕçӳсене те, тăрăшулăхна та,
чăтăмлăхна та пĕлетĕп. Эсĕ пăсăк çынсене тӳсме
пултарайманнине те пĕлетĕп. Апостол мар çинчех
хăйсене апостол текенсене эсĕ тĕрĕслесе пăхнă та
вĕсем суеçĕсем кăна пулнине тупса палăртнă.
3 Сана нумай тӳсме лекет, эсĕ чăтăмлă, Манăн
ятăмшăн ывăна пĕлми ĕçлетĕн. 4 Анчах та Манăн
сана асăрхаттарса каламалли те пур: санра халĕ
малтанхи юратулăху çук. 5 Çапла вара, ху еплерех
чун çӳллĕшĕнчен ӳкнине аса ил те ӳкĕн,
малтанхиллех ĕçлесе пурăн. Апла тумасан, часах
сан патна пырăп, çутаткăçна вырăнĕнчен хускатăп.
6 Çапах та николаитсен ĕçне-хĕлне эсĕ Манашкалах
курайманнишĕн сана ырламалла. 7 Сывлăш
чиркӳсене мĕн каланине илтме хăлха пурри
илттĕр. Çĕнтерекене Эпĕ Туррăн райĕ варринчи
пурăнăç йывăççин çимĕçне çиме ирĕк парăп“».

### Смирнăри чиркĕве янă çыру

8 «Смирна чиркĕвĕн ангелне те çырса яр:
„Малтанхи тата Кайранхи, Вилнĕскер, акă,
Чĕрĕскер, çапла калать, те: 9 Санăн ĕçӳсене, хуйху-
суйхуна та, чухăнлăхна та (тĕрĕссипе, эсĕ – пуян)

пĕлетĕп. Хăйсене иудей текенсем сан пирки усал
калаççĕ. Вĕсем иудейсем мар – шуйттан пухăвĕ.
10 Хăвна тӳсме лекессинчен нимĕнрен те ан хăра.
Акă, сире тĕрĕслесе пăхас тесе, сирĕнтен хăшне-
пĕрне шуйттан тĕрмене хуптарĕ, унта эсир пĕр
вунă кун тертленĕр. Вилмелле пулсан та, ĕненӳпех
вил, вара Эпĕ сана пурăнăç пуç кăшăлне
тăхăнтартăп. 11 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине
илтме хăлха пурри илттĕр. Çĕнтерекене иккĕмĕш
вилĕм сăтăр тăваймĕ“».

## Пергамри чиркĕве янă çыру

12 «Пергам чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: „Икĕ
енĕ те çивĕч Хĕçли çапла калать, те: 13 Санăн
ĕçӳсене, эсĕ шуйттанăн престолĕ ларнă вырăнта
пурăннине пĕлетĕп. Сирĕн патăрта, шуйттан
пурăнакан çĕрте, Ман çинчен пĕлтерекен
шанчăклă Антипăна вĕлерчĕç. Эсĕ çав вăхăтра та
Ман ятăма тытса пынине, Мана ĕненме
пăрахманнине пĕлетĕп. 14 Анчах та Манăн сана
кăштах асăрхаттарса каламалли те пур: унта, сан
патăнта, хăшĕ-пĕрисем Валаам вĕрентĕвне тытса
пыраççĕ. Çавскер Валака Израиль çыннисене
илĕртсе улталама вĕрентрĕ, çавăнпа вĕсем чӳк
çимĕçне çиеççĕ, аскăнланса пурăнаççĕ. 15 Сан
патăнта тата николаитсен вĕрентĕвне тытса
пыракансем те пур, Эпĕ вĕсен вĕрентĕвне
кураймастăп. 16 Ӳкĕн! Апла тумасан, часах сан патна
пырăп, çав çынсемпе чĕлхе-çăварăм хĕçĕпе
çапăçăп. 17 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине илтме
хăлха пурри илттĕр. Çĕнтерекене Эпĕ курăнми
маннă çиме ирĕк парăп, шурă чул парнелĕп. Çав
чул çине илеккеннисĕр пусне урăх никам та пĕлмен
çĕнĕ ят çырса хунă“».

## Фиатирăри чиркĕве янă çыру

18 «Фиатира чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: „Вут
çулăмĕ евĕр куçлă, шăранакан пăхăр пек ураллă
Турă Ывăлĕ çапла калать, те: 19 Санăн ĕçӳсене те,
юратулăхна та, Турăшăн ĕçленине те, ĕненĕвне те,
чăтăмлăхна та пĕлетĕп. Тата хальхи ĕçӳсем
малтанхинчен пысăкрах пулнине те пĕлетĕп.
20 Анчах та Манăн сана кăштах асăрхаттарса
каламалли пур: эсĕ хăйне пророк теекен хĕрарăма,
Иезавеле, чармастăн. Вăл вара Манăн чурамсене
аскăнланса пурăнма, чӳк çимĕçĕ çиме улталаса
вĕрентет. 21 Эпĕ ăна пăсăк ĕçĕсенчен ӳкĕнмешкĕн
вăхăт парсаттăм, анчах та вăл ӳкĕнмерĕ. 22 Акă, Эпĕ
ăна çавăншăн вырăнпах выртмалла тăвăп. Унпа
пĕрле çылăха кĕрсе пурăннисем çине вара, хăйсен
ĕçĕсемшĕн ӳкĕнмесен, пысăк хуйхă ярăп. 23 Эпĕ ун
хыççăн каякансем çине вилĕм ярăп, вара Эпĕ
çынсен шухăш-туйăмне Тĕрĕслекенĕ пулнине пур
чиркӳсем те ăнланĕç. Эпĕ сире кашнинех ĕçĕрсене
кура тавăрса парăп. 24 Эсир Фиатирăра пурăнакан
ытти хăш-пĕр çынсемпе пĕрле çав вĕрентӳ хыççăн
каймастăр, „шуйттанлăхăн шырланĕ“ текенни
мĕнне пĕлместĕр. Çавăнпа та сире пурне те çакна
калатăп: „Эпĕ сирĕн çине урăх çĕклем хумăп“. 25 Эпĕ
пыриччен вара эсир халиччен мĕне тытса пынă,
çавнах тытса пурăнăр. 26 Çĕнтерекене, Манăн
ĕçĕмсене вĕçне çитиччен туса пыракана, Эпĕ
Хамăн Аттемрен урăх халăхсемпе хуçаланма епле
ирĕк илнĕ, çапла ирĕк парăп. Вăл вара çав
халăхсене тимĕр туяпа пăхăнтарĕ, вĕсем тăм савăт-
сапа пек ванса пĕтĕç. 28 Çĕнтерекене тата шурăмпуç
çăлтăрĕ парăп. 29 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине
илтме хăлха пурри илттĕр“».

## Сардисри чиркĕве янă çыру

3 «Сардис чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: Туррăн
çичĕ сывлăшĕпе çичĕ çăлтăр Пурри çапла
калать, те: „Санăн ĕçӳсене пĕлетĕп. Ĕненекен ушкăн
ятлă пулин те, санăн чиркĕвӳ чĕрĕ мар, вилĕ. 2 Сыхă
пул, пĕтес патне çитнине те пулин упраса хăвар.
Санăн ĕçӳсем Туррăм умĕнче тивĕçсĕррине Эпĕ
куратăп. 3 Эппин хăвна мĕн вĕрентнине, мĕн
каланине аса ил те, çавсене пăхăнса, ӳкĕн. Эсĕ сыхă
тăмасассăн, Эпĕ сан патна, вăрă пек, кĕтмен
вăхăтра пырăп, хăш самантра пырасса эсĕ
сисеймĕн те. 4 Çапах та санăн патăнта, Сардисра,
хăйсен таса тумне вараламан темиçе çын пур.
Вĕсем Манпа пĕрле шурă тумтирпе çӳреме тивĕç
пулĕç. 5 Çĕнтерекен шурă тумтир тăхăнĕ. Эпĕ унăн
ятне пурăнăç кĕнекинчен чĕрсе пăрахмăп, çав ят
çинчен Аттемпе Унăн ангелĕсене каласа пĕлтерĕп.
6 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине илтме хăлха
пурри илттĕр“».

## Филадельфири чиркĕве янă çыру

7 «Филадельфи чиркĕвĕн ангелне те çырса яр:
Давид патша çăраççийĕ Унра, Вăл уçнине никам та
хупаймĕ, Вăл хупнине никам та уçаймĕ. Çавă –
Сăвапли, Чăнни – çапла калать, те: 8 „Эпĕ санăн
ĕçӳсене пĕлетĕп. Акă, Эпĕ санăн умăнти алăка
уçрăм, ăна никам та хупаймĕ. Çирĕп вăй-халлă мар
пулин те, эсĕ Манăн сăмахăма упраса хăварайрăн,
Ман ятăмран тунмарăн. 9 Акă ĕнтĕ, Эпĕ хайхи
шуйттан пухăвĕнчи çынсене, чунĕпе иудей мар
çинчех хăйсене иудей текен суеçĕсене, санăн уру
умне ӳксе пуççапмалла тăвăп. Вара вĕсем Эпĕ сана
юратнине пĕлĕç. 10 Çĕр çинчи çынсене илĕртсе
улталамашкăн пĕтĕм тĕнчене йывăр тĕрĕслев пулĕ.
Эпĕ сана чăтăмлă пулма хушнине эсĕ упраса
хăвартăн, çавăнпа йывăр тĕрĕслев вăхăтĕнче Эпĕ
те сана упраса хăварăп. 11 Акă, Эпĕ часах пырăп.
Çĕнтерекенĕн пуç кăшăлне хывса ан илччĕр тесен,
эсĕ мĕн пуррине çирĕп тытса пыр. 12 Çĕнтерекене
Эпĕ Туррăмăн Çуртĕнче тĕреклĕх юпи тăвăп, вăл
Турă Çуртĕнчех юлĕ. Ун çине Эпĕ Туррăм ятне, çӳл
тӳперен, Туррăм патĕнчен анакан Туррăм хулин –
çĕнĕ Иерусалимăн – ятне тата Хамăн çĕнĕ ятăма
çырса хурăп. 13 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине
илтме хăлха пурри илттĕр“».

### Лаодикири чиркĕве янă çыру

14 «Лаодики чиркĕвĕн ангелне те çырса яр:
шанчăклă та чăн çирĕплетсе калакан Аминь, Турă
пултарнин пуçламăшĕ, çапла калать, те: 15 „Санăн
ĕçӳсене пĕлетĕп. Эсĕ сивĕ те мар, вĕри те мар. Ах,
эсĕ сивĕ е вĕри пулинччĕ! 16 Анчах та эсĕ сивĕ те
мар, вĕри те мар, лĕп пулнăран Эпĕ сана Хамăн
чĕлхе-çăварăмран кăларса пăрахăп. 17 „Çитменни
ман нимĕн те çук, эпĕ пуйрăм, эпĕ пуян,“– тетĕн эсĕ.
Ху вара телейсĕр те мĕскĕн, кĕлмĕç, суккăр, çаппа-
çарамас пулнине те пĕлместĕн. 18 Эпĕ сана акă
мĕнле канаш паратăп: пуяс тетĕн пулсан Манран
вутпа тасалнă ылтăн туян. Хăвăн намăсна,
çарамаслăхна пытармашкăн вара Манран шурă
тумтир туянса тăхăн. Куçна вара, куракан пултăр
тесе, куç эмелĕ сĕр. 19 Эпĕ кама юрататăп, çавна
питлетĕп, айăплатăп. Çавăнпа чунна çунтар, ӳкĕн.
20 Акă, Эпĕ алăк умĕнче шаккаса тăратăп. Кам
Манăн сассăма илтсе алăкне уçĕ, Эпĕ ун патне
кĕрĕп те унпа пĕрле тăванлăх апачĕ çийĕп, Манпа
пĕрле вăл та çийĕ. 21 Çĕнтерекене Эпĕ Хампа пĕрле
престолăм çине ларма ирĕк парăп. Эпĕ Хам та,
çавнашкалах çĕнтерсе, Аттемпе пĕрле Унăн
престолĕ çине лартăм. 22 Сывлăш чиркӳсене мĕн
каланине илтме хăлха пурри илттĕр“».

### Иоана тӳпери курăнни

4 Унтан эпĕ пăхрăм та, акă, тӳпенелле уçăлнă
алăк куртăм. Вара хампа маларах калаçнă
труба сасси пек сасă каллех манпа калаçа пуçларĕ.
«Кунта хăпар, эпĕ сана малашне мĕн пулассине
кăтартăп», – терĕ вăл. 2 Çав самантрах Святой
Сывлăш витĕмĕпе курăну пулчĕ. Акă, тӳпери
престол курăнчĕ, престол çинче вара Лараканĕ
пур. 3 Лараканĕ ясписпа сардис текен хаклă йышши
чулсем евĕр йăлтăртатать, престол тавра изумруд
пек асамат кĕперĕ. 4 Престол йĕри-тавра тата тепĕр
çирĕм тăватă престол, вĕсем çинче çирĕм тăватă
ватă ларать. Хăйсем шап-шурă тумтир тăхăннă,
пуçĕсем çинче – ылтăн пуç кăшăлĕсем.
5 Престолран çиçĕм çиççе тухать, аслати сасси,
кĕрлев илтĕнсе тăрать. Престол умĕнче вутлăн
çунакан çичĕ çутаткăç – Туррăн çичĕ сывлăшĕ.
6 Престол умĕнче вара витĕр курăнакан пăр пек
кĕленче тинĕс. Тата престол умĕнче те, йĕри-тавра
та тăватă чĕр чун, куçĕсем хăйсен малта та, кайра
та темĕн чухлĕ. 7 Пĕр чĕр чунĕ арăслан евĕрлĕ,
тепри вăкăр евĕрлĕ, виççĕмĕшĕ этем сăнлĕ,
тăваттăмĕшĕ вĕçекен ăмăрт кайăк евĕрлĕ. 8 Тăватă
чĕр чунĕн те кĕлетки тавра ултшар çунат, çунат
айĕсем куçлă-куçлă. Тăватă чĕр чунĕ те кунĕн-çĕрĕн
татти-сыпписĕр çапла кăшкăрса хыттăн мухтаççĕ:
«Пурне те тытса тăракан Хуçа Турă, Пулни, Пурри,
Пуласси – Святой, Святой, Святой!» 9 Çав чĕр
чунсем престол çинче Ларакана, ĕмĕр-ĕмĕрех
Пурăнакана мухтанă, чысланă, тав тунă чухне
10 çирĕм тăватă ватă хайхи Ларакан умне, ĕмĕр-
ĕмĕрех Пурăнакан умне ӳке-ӳке пуççапаççĕ. Вĕсем
хăйсен пуç кăшăлĕсене престол умне хурса çапла
калаççĕ: 11 «Хуçа Туррăмăр, Эсĕ мухтав та, чыс та,
вăй-хăват та илме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен пурне те
Эсĕ пултарнă, пурте Санăн ирĕкӳпе пурăнать, пурте
Санăн ирĕкӳпе пулнă».

### Çыру тĕркемĕ тата Путек

5 Унтан эпĕ престол çинче Лараканăн сылтăм
аллинчи çыру тĕркемне – кĕнекене –
асăрхарăм. Тĕркемĕн икĕ енне те çырнăччĕ, ăна
çичĕ сăркăч пичетпе пичетленĕччĕ. 2 Вара эпĕ
хăватлă ангела куртăм, вăл хыттăн çапла каларĕ:
«Пичет сăркăчне хăйпăтса çак кĕнекене уçма
тивĕçли кам пур?» 3 Анчах та кĕнекене уçма тата
пăхма пултаракан тӳпере те, çĕр çинче те, çĕр
айĕнче те тупăнмарĕ. 4 Эпĕ çак кĕнекене уçса
вулама, ун ăшне пăхма та пулин тивĕçли никам та
тупăнманшăн чылай йĕтĕм. 5 Вара ватăсенчен пĕри
мана çапла каларĕ: «Ан йĕр. Акă Иуда йăхĕнчен
тухнă арăслан, Давид тăхăмĕ çĕнтерчĕ. Вăл çичĕ
пичет сăркăчне хăйпăтса кĕнекене уçма
пултарать».
6 Эпĕ пăхрăм та, акă, престол умĕнче, тăватă чĕр
чунпа ватăсем хушшинче пусса Турра кӳнĕ путек
пек Путек тăнине куртăм. Вăл çичĕ мăйракаллă та
çичĕ куçлă, ку – Туррăн пĕтĕм çĕр çине янă çичĕ
сывлăшĕ. 7 Хайхи Путек престол çинче Ларакан
патне пычĕ те Унăн сылтăм аллинчи кĕнекене
илчĕ. 8 Вăл çав кĕнекене илсенех çирĕм тăватă ватă
хайхи Путек умне ӳксе пуççапрĕç. Вĕсенчен кашнин
аллинчех кĕсле тата ырă шăршăллă фимиам
тултарнă ылтăн савăтчĕ; ку вăл – сăваплă çынсен
кĕлли. 9 Хăйсем çапла каласа çĕнĕ юрă юрлаççĕ:
«Кĕнекене илсе пичете хăйпăтма Эсĕ тивĕçлĕ,
мĕншĕн тесен Сана пусса Турра кӳчĕç. Эсĕ пире,
тĕрлĕ йăх-ăру, тĕрлĕ чĕлхеллĕ тĕрлĕ халăх
çыннисене, Турă валли Хăвăн Юнупа тӳлесе илтĕн.
10 Эсĕ пире Туррăмăрăн патшалла священникĕсем
турăн, ĕнтĕ çĕр çинче эпир хуçаланăпăр!» 11 Унтан
пăхрăм та престол тавра пухăннă чĕр чунсене,
ватăсене тата йышлă ангелсене куртăм, вĕсен
сассине илтрĕм. Ангелсен шучĕ вуншар пинччĕ,
пин-пинччĕ. 12 Вĕсем вăйлă саслăн çапла калаççĕ:
«Пусса Турра кӳнĕ Путек вăй-хăватпа пуянлăх,
ăслăлăхпа çирĕплĕх, чыс та, мухтав та, пиллĕх те
илме тивĕçлĕ!» 13 Унтан эпĕ тӳпери тата çĕр çинчи,
çĕр айĕнчи тата тинĕсри мĕн пур чĕрĕ чун çапла
каланине илтрĕм: «Престол çинче Ларакана тата
Путеке ĕмĕр-ĕмĕрех пиллĕх те, чыс та, мухтав та,
вăй-хăват та пултăр!» 14 «Аминь!» – терĕç тăватă чĕр
чун. Вара çирĕм тăватă ватă ĕмĕр-ĕмĕр Пурăнакана
ӳксе пуççапрĕç.

### Пичетсене илни

6 Унтан эпĕ Путек çичĕ пичетрен пĕрремĕшне
хăйпăтса илнине куртăм. Вара тăвата чĕр
чунран пĕри аслати сассиллĕн: «Килсе кур!» –
тенине илтрĕм. 2 Çавăнтах пăхрăм та, акă, хам умра
шурă ут куртăм. Юланутçи аллине ухă тата хăйне
панă пуç кăшăлĕ тытнă. Хăй çĕнтермешкĕн тухнă
çĕнтерӳçĕ пек пырать.
3 Путек иккĕмĕш пичете хăйпăтса илчĕ те,
иккĕмĕш чĕр чунĕ: «Килсе кур!» – тенине илтрĕм.
4 Вара тепĕр ут, çӳрен-хĕрлĕскер, тухрĕ.
Юланутçине, çынсем пĕр-пĕрне вĕлерччĕр тесе,
çĕр çинчи канăçлăха илме ирĕк тата пысăк хĕç
панă.
5 Путек виççĕмĕш пичете хăйпăтса илсен,
виççĕмĕш чĕр чунĕ: «Килсе кур!» – тенине илтрĕм.
Вара пăхрăм та хура ут куртăм. Юланутçи аллине
тараса тытнă. 6 Унтан эпĕ тăвата чĕр чун енчен
килекен сасса илтрĕм. «Пĕр йĕкĕр ыврăç тулă пĕр
динарий тăрать, виçĕ йĕкĕр ыврăç урпа та пĕр
динарий тăрать. Йыврăç çăвĕпе хĕрлĕ эрехе вара ан
тĕкĕн!» – терĕ çав сасă.
7 Путек тăваттăмĕш пичете хăйпăтса илсен,
тăваттăмĕш чĕр чунĕ: «Килсе кур!» – тенине
илтрĕм. 8 Вара пăхрăм та шупка-турă ут куртăм.
Юланутçи Вилĕм ятлă, ун хыççăн çӳрекенĕ – Тамăк.
Çав юланутçăна çĕрĕн тăваттăмĕш пайне хĕçпе,
выçлăхпа, вĕлерекен чир-чĕрпе, çĕр çинчи тискер
кайăксемпе пĕтерме ирĕк панă.
9 Путек пиллĕкмĕш пичете хăйпăтса илсен, эпĕ
парне вырăнĕ айĕнче Турă сăмахĕшĕн, Христос
çинчен çирĕплетсе пĕлтернĕшĕн вĕлернисен
чунĕсене куртăм. 10 Вĕсем хыттăн: «Святой тата Чăн
Патшамăр! Мĕншĕн Эсĕ çак тарана çитсе те çĕр
çинчи çынсене пирĕн юншăн суд туса тавăрмастăн?
Тата хăçанччен кĕтмелле?» – тесе ӳпкелешрĕç.
11 Унтан вĕсене пурне те шурă тумтир пачĕç,
хăйсем пекех вилес юлташĕсен, ĕненекен
тăванĕсен шучĕ тулса çитессе тата тепĕртак, лăпкăн
кĕтме хушрĕç.
12 Путек улттăмĕш пичете хăйпăтса илсен, çакна
куртăм: питĕ вăйлăн çĕр чĕтренчĕ, хĕвел хуйхă
тумтирĕ пек хуралчĕ, уйăх юнланнă пек хĕрелчĕ.
13 Смоква йыврăççин пиççе çитмен çимĕçĕсем вăйлă
çилпе çĕр çине тăкăннă пекех тӳпери çăлтăрсем çĕр
çине тăкăнчĕç. 14 Тĕрке пек чĕркенсе, тӳпе çухалчĕ,
тусемпе утравсем пурте хăйсен вырăнĕнчен
тапранса куçрĕç. 15 Çĕр çинчи патшасем те,
улпутсем те, пуянсем те, çар пуçĕсем те, хуçасем те,
ытти мĕн пур чурасемпе ирĕклисем те ту
хăвăлĕсемпе хушăкĕсене пытанса пĕтрĕç. 16 «Пирĕн
çине ӳкĕр, – терĕç вĕсем тусемпе чулсене, – пире
престол çинче Лараканăн сăнĕнчен тата Путек
çиллинчен пытарса хăварăр! 17 Унăн çиллин аслă
кунĕ çитрĕ! Çак çилле кам тӳссе иртерме пултарĕ?»

### Пичет лартса палăртни

7 Çакăн хыççăн эпĕ тăвата ангела куртăм. Вĕсем,
çĕр çине те, тинĕс çине те, нимĕнле йыврăç çине
те çил ан вĕртĕр тесе, çĕрĕн тăвата кĕтессинче çĕр
çинчи тăвата çиле чарса тăраççĕ. 2 Унтан эпĕ хĕвел
тухăç енчен Чĕрĕ Туррăн пичетне тытнă тепĕр
ангел тухса хăпарнине куртăм. Çĕрпе тинĕсе сăтăр
тума ирĕк панă тăвата ангела вăл вăйлă саслăн
çапла каларĕ: 3 «Хамăр Туррăмăрăн чурисен
çамкисем çине пичет лартса палăртса тухиччен
çĕре те, тинĕсе те, йыврăççене те сăтăр ан тăвăр!»
4 Вара эпĕ пичетпе палăртнисен хисепне илтрĕм:
Израилĕн мĕн пур йăхĕсенчен пичетпе
палăртнисем пурĕ çĕр хĕрĕх тăвата пинччĕ. 5 Иуда
йăхĕнчен вун икĕ пин çынна пичетпе палăртнă;
Рувим йăхĕнчен – вун икĕ пин; Гад йăхĕнчен – вун
икĕ пин; 6 Асир йăхĕнчен – вун икĕ пин; Неффалим
йăхĕнчен – вун икĕ пин; Манассия йăхĕнчен – вун
икĕ пин; 7 Симеон йăхĕнчен – вун икĕ пин; Левий
йăхĕнчен – вун икĕ пин; Иссахар йăхĕнчен – вун
икĕ пин; 8 Завулон йăхĕнчен – вун икĕ пин; Иосиф
йăхĕнчен – вун икĕ пин; Вениамин йăхĕнчен – вун
икĕ пин.
9 Вара эпĕ пăхрăм та, акă, никам шутласа
кăларайми йышлă халăх куртăм. Унта тĕрлĕ йăх-
ăру, тĕрлĕ чĕлхеллĕ тĕрлĕ халăх çыннисем. Вĕсем
престол умĕнче, Путек умĕнче тăраççĕ. Хăйсем
шурă тумтир тумланнă, аллисене пальма
турачĕсем тытнă. 10 Вĕсем вăйлă саслăн: «Çăлăнăç
престол çинче ларакан Туррăмăрпа Путекре!» –
теççĕ. 11 Престол тавра, ватăсемпе тăвата чĕр чун
тавра, мĕн пур ангелсем тăратчĕç. Вĕсем пурте
престол умне ӳпне ӳксе Турра пуççапрĕç. 12 «Аминь!
Туррăмăра ĕмĕр-ĕмĕрех пиллĕхпе мухтав,
ăслăлăхпа тав, чыс та, вăй-хăват та, тĕреклĕх те
пултăр! Аминь», – терĕç вĕсем.
13 Ватăсенчен пĕри калаçа пуçларĕ. «Çак шурă
тумтирлисем камсем тата ăçтан килнине пĕлетĕн-
и?» – тесе ыйтрĕ вăл манран. 14 «Ырă çыннăм! Ăна
эсĕ хăвах пĕлетĕн», – терĕм эпĕ. Вара вăл мана
çапла каларĕ: «Ку çынсем – тĕрĕслев асапĕ витĕр
тухнисем. Вĕсем хăйсен тумтирне Путек Юнĕпе
çуса тасатнă, шуратнă. 15 Çавăнпа вĕсем Турă
престолĕ умĕнче тăраççĕ, Турă Çуртĕнче Уншăн
кунĕн-çĕрĕн тăрăшаççĕ. Престол çинче Ларакан
вара вĕсемпе пĕрле пурăнĕ. 16 Вĕсен ĕнтĕ текех
нихăçан та хырăмĕ выçмĕ, ăшĕ те хыпмĕ. Вĕсене
нимĕнле хĕвел те, шăрăх та пĕçертмĕ. 17 Мĕншĕн
тесен престол умĕнчи Путек вĕсен кĕтӳçи пулĕ,
вĕсене чĕрĕлĕх шывĕпе тапса тăракан çăлкуççем
патне ертсе кайĕ. Турă вĕсен куçĕнчи кирек епле
куççульне те шăлса ярĕ».

### Çиччĕмĕш пичет тата ылтăн тĕтĕркĕч

8 Путек çиччĕмĕш пичете хăйпăтса илсессĕн,
тӳпе шăплăха путрĕ, çапла çур сехете яхăн

тăчĕ. 2 Вара эпĕ Турă умĕнче тăракан çичĕ трубаллă
çичĕ ангела куртăм. 3 Унтан ылтăн тĕтĕркĕч тытнă
тепĕр ангел парне вырăнĕ умне пырса тăчĕ. Ăна
престол умĕнчи ылтăн парне вырăнĕ çине
хумашкăн пит нумай фимиам тата мĕн пур сăваплă
çынсен кĕллисене панăччĕ. 4 Ангел аллинчи
фимиамран тухакан тĕтĕм, сăваплисенĕн кĕллипе
пĕрле, Турă патне çĕкленетчĕ. 5 Унтан ангел парне
вырăнĕ çинчи вута тĕтĕркĕч ăшне тултарчĕ те ăна
çĕр çине тăкрĕ. Çав самантрах çĕр çинче аслати
сасси кĕрлесе кайрĕ, çиçĕм ялтăртатрĕ, çĕр
чĕтренме тытăнчĕ.

## Çичĕ трубаллă çичĕ ангел

6 Вара çичĕ трубаллă çичĕ ангел трубисене
кăшкăртма хатĕрленчĕç.
7 Пĕрремĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те, çĕр
çине юнпа хутăш вутлă пăр çума пуçларĕ. Вара çĕр
çинчи йывăççен виççĕмĕш пайĕ тата пĕтĕм ешĕл
курăк çунса кайрĕ.
8 Иккĕмĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те, темскер,
вут-хĕм сирпĕтекен пысăк ту пекскер, тинĕсе ӳкрĕ.
Вара тинĕсĕн виççĕмĕш пайĕ юн пулса тăчĕ,
9 тинĕсри чĕрĕ чунсен виççĕмĕш пайĕ вилсе пĕтрĕ,
тинĕс çинчи карапсен те виççĕмĕш пайĕ пĕтрĕ.
10 Виççĕмĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те,
çутаткăç пек çунса, тӳперен пысăк çăлтăр ӳкрĕ. Вăл
юхан шывсемпе çăлкуççен виççĕмĕш пайĕ çине
ӳкрĕ. 11 Çав çăлтăр Армути ятлăччĕ. Вара çĕр çинчи
юхан шывсен виççĕмĕш пайĕ армути тутиллĕ пулса
тăчĕ. Вăл йӳçек шыва пула нумай-нумай çын вилсе
пĕтрĕ.
12 Тăваттăмĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те,
хĕвелĕн виççĕмĕш пайĕ, уйăхăн виççĕмĕш пайĕ
тата çăлтăрсен виççĕмĕш пайĕ сӳнчĕ, тĕттĕмленсе
ларчĕ. Çавна пула кунăн виççĕмĕш пайĕ, çĕрĕн
виççĕмĕш пайĕ пекех, çутăсăр тăрса юлчĕ. 13 Унтан
эпĕ пăхрăм та çӳл тӳпере вĕççе пыракан ангела
куртăм. Вăл вăйлă саслăн: «Юлашки виçĕ ангел
кăшкăртма хатĕрленеççĕ, вĕсен трубисен сассисене
илтсессĕн çĕр çинче пурăнакансене хуйхă пулĕ,
хуйхă, хуйхă!» – терĕ.

9 Пиллĕкмĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те, эпĕ
тӳперен çĕр çине çăлтăр ӳкнине куртăм.
Çăлтăрне тĕпсĕрлĕхе уçмалли çăраççи панăччĕ.
2 Вăл вара тĕпсĕрлĕх шăтăкне уçрĕ те, унтан, пысăк
кăмака анинчен тухнă евĕр, тĕтĕм палкаса тухрĕ.
Тĕпсĕрлĕхрен йăсăрланакан тĕтĕмпе вара хĕвел те,
сывлăш та тĕттĕмленчĕ. 3 Тĕтĕм ăшĕнчен хĕрлĕ
шăрчăксем йăтăнса тухрĕç, вĕсене çĕр çинчи
скорпионăнни пек вăй-хăват панăччĕ. 4 Анчах та
хĕрлĕ шăрчăксене çĕр çинчи ешĕл йывăç-курăка
сăтăр тума чарнă, çамкисем çине Турă пичечĕ
лартса палăртман çынсене çеç сăтăр тума каланă.
5 Хĕрлĕ шăрчăксене çав çынсене вĕлерме хушман,
вĕсен çынсене пилĕк уйăха яхăн асап кăтартмалла
пулнă. Скорпион сăхнипе çын епле асапланать,
хĕрлĕ шăрчăксем те çавнашкалах
асаплантармалла. 6 Ун чухне çынсем вилĕм шырĕç,
анчах ăна тупаймĕç; вилесшĕн пулĕç, анчах вилĕм
вĕсенчен тарĕ.
7 Хĕрлĕ шăрчăксем çапăçăва хатĕр çар лашисем
евĕрлĕччĕ. Вĕсен пуçĕ çинче ылтăн пуç кăшăлĕ
пеккиччĕ, сăнĕпе вара вĕсем этем евĕрлĕрехчĕ.
8 Çăмĕсем вĕсен хĕрарăм çӳçĕ пек, шăлĕсем
арăслан шăлĕ пек. 9 Çийĕсенче вĕсен çар тумтирĕ
пек тимĕр тумтир, çуначĕсен шавĕ вара çапăçăва
ыткăнакан йышлă лашасен тата çар урапisen
шавĕ-кĕмсĕртетĕвĕ евĕр. 10 Хĕрлĕ шăрчăксен хӳри
вĕçĕнче скорпион сăнни пек сăнă, çынсене сăтăр
тумашкăн вĕсене пилĕк уйăха яхăн ирĕк панă.
11 Хĕрлĕ шăрчăксен патши – тĕпсĕрлĕх ангелĕ,
еврейла ăна Аваддон теççĕ, грекла – Аполлион .
12 Пĕр хуйхă иртрĕ, акă, ун хыçĕнчен тепĕр икĕ
хуйхă килет.
13 Улттăмĕш ангелĕ трубине кăшкăртрĕ те, вара
эпĕ сасă илтрĕм. Çав сасă Турă умĕнчи ылтăн парне
вырăнĕн тăватă мăйракинчен пĕр харăс тухать.
14 «Ефрат ятлă аслă юхан шыв хĕрринчи
сăнчăрланă тăватă ангела ирĕке яр», – терĕ çав сасă
трубаллă улттăмĕш ангела. 15 Вара хайхи тăватă
ангела ирĕке ячĕç. Вĕсене çĕр çинчи çынсен
виççĕмĕш пайне вĕлермешкĕн çак сехет, çак кун,
çак уйăх, çак çул валли хатĕр тăратнă пулнă. 16 Эпĕ
утлă çарăн хисепне илтрĕм: унăн йышĕ ик çĕр хут
пин-пинччĕ. 17 Мана курăнура лашасемпе
юланутçăсем акă еплерех курăнчĕç. Вĕсем çинче
вут пек хĕрлĕ, гиацинт пек кăвак, кӳкĕрт пек сарă
çар тумтирĕ. Лашисен пуçĕсем арăслан пуçĕ пек,
çăварĕсенчен вутпа тĕтĕм тата кӳкĕрт чашласа
тухать. 18 Вĕсен çăварĕсенчен тухакан çак виçĕ
инкекпе – вутпа, тĕтĕмпе тата кӳкĕртпе – çынсен
виççĕмĕш пайĕ вилсе пĕтрĕ. 19 Лашисен вăй-хăвачĕ
çăварĕсемпе хӳрисенчеччĕ, хӳрисем вара çĕленсем
пекчĕ. Вĕсем çав çĕлен пуçлă хӳрисемпе сăха-сăха
çынсене пĕтеретчĕç.
20 Çак виçĕ инкекпе вилмесĕр юлнисем хăйсен
ĕçĕсемшĕн ӳкĕнмерĕç. Вĕсем усал сывлăшсене тата
ылтăн, кĕмĕл, пăхăр, чул, йывăç кĕлеткесене –
курма та, илтме те, çӳреме те пултарайманскерсене
– пурпĕрех пуççапма пăрахас темерĕç. 21 Хăйсем
çын вĕлернĕшĕн те, тухатнăшăн та, аскăнланнăшăн
та, вăрланăшăн та пурпĕрех ӳкĕнмерĕç.

## Çыру тĕркемĕ тытнă ангел

10 Унтан эпĕ тӳперен анакан тепĕр хăватлă
ангела куртăм. Вăл пĕлĕтпе чĕркеннĕччĕ,
пуçĕ çинче асамат кĕперĕ тăратчĕ. Хăйĕн пичĕ
хĕвел пек çиçетчĕ, урисем вут юпа евĕрлĕччĕ.
2 Аллинче унăн пысăкках мар, уçă çыру тĕркемĕччĕ.
Сылтăм урипе вăл тинĕс çине пусрĕ, сулахаййипе –
çĕр çине, 3 унтан арăслан сасси пек вăйлă саслăн
кăшкăрса ячĕ. Ун сассине хирĕç çичĕ аслати сасă
пачĕ. 4 Çичĕ аслати сасă парсассăн эпĕ çырма
хатĕрлентĕм, анчах та тӳперен: «Çичĕ аслати мĕн
каланине çырса ан хур, никама та ан пĕлтер», –

тени илтӗнчӗ. 5 Унтан эпӗ ҫакна куртӑм: хайхи
хӑрах урипе тинӗс ҫине пуснӑ, хӑраххипе ҫӗр ҫине
пуснӑ ангел аллине тӳпенелле ҫӗклерӗ. 6 Вара вӑл
ӗмӗр-ӗмӗрех Пурӑнакан ячӗпе, тӳпепе тӳперине,
ҫӗрпе ҫӗр ҫинчине, тинӗспе тинӗсрине йӑлтах
Пултаракан ячӗпе тупа туса: «Ӗнтӗ урӑх вӑхӑт
юлмарӗ, – терӗ. 7 – Ҫиччӗмӗш ангел трубине
кӑшкӑртма хатӗрленсен, кӑшкӑртса ярсан, Турӑн
вӑрттӑнлӑхӗ пулса ҫитӗ. Ун ҫинчен Вӑл Хӑйӗн
чурисене, пророксене, малтанах пӗлтернӗ».
8 Вара маларах мана тӳперен илтӗннӗ сасӑ каллех
манпа калаҫа пуҫларӗ: «Кай та хӑрах урипе тинӗс
ҫинче, хӑраххипе ҫӗр ҫинче тӑракан ангел аллинчи
уҫӑ ҫыру тӗркемне ил», – терӗ. 9 Эпӗ ангел патне
пытӑм та: «Ҫыру тӗркемне мана парсамччӗ», –
терӗм. «Илех, ҫисе яр ӑна, – тавӑрчӗ вӑл. – Ӑна
ҫисен, туту-ҫӑварунта пыл тути калӗ, анчах та ӑш-
чиккӳне йӳҫек касӗ». 10 Эпӗ ангел аллинчи ҫыру
тӗркемне илтӗм те ӑна ҫисе ятӑм. Ҫинӗ чухне тута-
ҫӑварӑмра пыл тути каларӗ, анчах та ӑш-чикӗме
йӳҫек касса кайрӗ. 11 «Санӑн тӗрлӗ чӗлхеллӗ
халӑхсемпе ӑрусем ҫинчен, патшасем ҫинчен
пророкла каласа татах пӗлтермелле пулӗ», – терӗ
вара мана ангел.

### Икӗ пророк

11 Мана виҫе карчӗсем картнӑ патак евӗрлӗ туя
пачӗҫ. Унтан ҫапла каларӗҫ: «Тӑр та Турӑ
Ҫурчӗпе парне вырӑнне виҫсе тух, унта
пуҫҫапакансем миҫен пулнине те шутла. 2 Турӑ
Ҫурчӗн тулаш картишне вара шута ан ил, мӗншӗн
тесен вӑл чӑн Турра пӗлмен халӑхсем валли. Вӗсем
сӑваплӑ хулара хӗрӗх икӗ уйӑх хушши хуҫаланӗҫ.
3 Эпӗ Хамӑн икӗ пророкӑма хӑват парӑп. Вӗсем,
ӳкӗнӳ тумтирӗ тӑхӑнса, пин те ик ҫӗр утмӑл кун
хушши пророкла каласа вӗрентӗҫ». 4 Ҫав
пророксем – ҫӗре тытса тӑракан Турӑ умӗнчи икӗ ҫу
йывӑҫҫи, икӗ ҫутаткӑҫ. 5 Кам та пулин пророксене
сӑтӑр тӑвас тесен, вӗсен ҫӑварӗнчен вут-ҫулӑм тухӗ
те тӑшманӗсене кӗллентерӗ. Пророксене сӑтӑр
тӑвас текенсем вилӗме тивӗҫлӗ. 6 Хӑйсем пророкла
калаҫнӑ чухне, ҫӗр ҫине ҫӑвакан ҫумӑра
чармашкӑн, вӗсем тӳпене хупма та пултараҫҫӗ.
Кӑмӑлӗсем пулсан, вӗсем юхан шывсене юн тума,
ҫӗр ҫине тем тӗрлӗ чир-чӗр яма та пултараҫҫӗ.
Вӗсене ҫавнашкал ирӗк панӑ. 7 Вӗсем хӑйсен
пророкла сӑмахне вӗҫлесен, тӗпсӗрлӗхрен тискер
кайӑк тухӗ те, вӗсемпе ҫапӑҫса, ҫӗнтерӗ; вӗсене
вӗлерӗ. 8 Вара вӗсен виллисем аслӑ хула урамӗнче
выртӗҫ. Вӑл хулана ытарлӑн Содом теҫҫӗ, Египет
теҫҫӗ; Хуҫамӑра ҫавӑнта пӑталанӑ. 9 Тӗрлӗ чӗлхеллӗ
мӗн пур халӑх, йӑх-ӑру ҫыннисем виҫӗ кун ҫурӑ
хушши вилесене курма ҫӳрӗҫ, вӗсен ӳчӗсене
тупӑклӑха хуртармӗҫ. 10 Ҫав пророксем пурӑнни
ҫынсемшӗн асап пек пулнӑ. Ҫавӑнпа ҫӗр ҫинче
пурӑнакансем вӗсем вилнишӗн савӑнӗҫ, пӗр-пӗрне
парнесем парӗҫ. 11 Анчах та виҫӗ кун ҫурӑран Турӑ
пророксем ӑшне Хӑйӗн чӗрӗлӗх сывлӑшне кӗртрӗ,
вара вӗсем урисем ҫине тӑчӗҫ. Ҫакна куракансем
хӑраса-чӗтресе ӳкрӗҫ. 12 Унтан икӗ пророкӗ те
тӳперен хӑватлӑ сасӑ илтрӗҫ. «Кунта хӑпарӑр!» –
терӗ вӗсене сасӑ. Вара тӑшманӗсен куҫӗ умӗнчех
вӗсем, пӗлӗт ҫине ларса, тӳпене ҫӗкленчӗҫ. 13 Ҫав
самантрах вӑйлӑн ҫӗр чӗтренчӗ те, хулан
вуннӑмӗш пайӗ ишӗлсе анчӗ. Ҫӗр чӗтреннипе ҫичӗ
пин ҫын вилчӗ. Ыттисем вара, вилесле хӑраса ӳксе,
Ҫӳлти Турра мухтарӗҫ. 14 Иккӗмӗш хуйхӑ иртрӗ.
Анчах та, акӑ, виҫҫӗмӗш хуйхӑ ҫитет.

### Ҫиччӗмӗш труба

15 Ҫиччӗмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртсан, тӳпере
вӑйлӑ сасӑсем янӑраса кайрӗҫ. «Ҫӗр ҫинчи
патшалӑх Хуҫа Туррӑмӑрпа Унӑн Христосӗн
патшалӑхӗ пулса тӑчӗ! Вӑл ӗмӗр-ӗмӗрех Патша
пулӗ!» – терӗҫ сасӑсем. 16 Вара Турӑ умӗнчи хӑйсен
престолӗсем ҫинче ларакан ҫирӗм тӑватӑ ватӑ ӳпне
ӳксе Турра пуҫҫапрӗҫ. 17 Вӗсем ҫапла каласа
кӗлтурӗҫ: «Эй, Хуҫамӑр, Пурне те тытса тӑракан
Турӑҫӑм, Эсӗ пур, пулнӑ, пулӑн! Эпир Сана хӑватлӑ
вӑй илсе Патшана ларнӑшӑн тав тӑватпӑр. 18 Чӑн
Турра пӗлмен халӑхсем урсах кайнӑччӗ, халӗ ӗнтӗ
Санӑн ҫиллӳ ҫитрӗ. Вилнисене суд тума, Хӑвӑн
чурусене, пророксене тата сӑваплисене, Хӑвӑн
ятунтан хӑракансене – аслисемпе кӗҫӗннисене те –
хӑйсем тивӗҫнине тавӑрса пама вӑхӑт ҫитрӗ. Ҫӗре
пӗтерекенсене пӗтерме вӑхӑт ҫитрӗ!» 19 Унтан
тӳпери Турӑ Ҫурчӗ уҫӑлчӗ те, Турӑ Ҫуртӗнчи Унӑн
халалӗн арчи курӑнса кайрӗ. Вара ҫиҫӗм
ялтӑртатрӗ, аслати сасси кӗрлерӗ, ҫӗр чӗтренчӗ
тата шултра пӑр ҫурӗ.

### Хӗрарӑмпа аҫтаха

12 Унтан тӳпере тӗлӗнмелле паллӑ – хӗвел
тумтирлӗ хӗрарӑм – курӑнчӗ. Унӑн ури
айӗнче уйӑх, пуҫӗ ҫинче вун икӗ ҫӑлтӑртан тунӑ пуҫ
кӑшӑлӗ. 2 Ҫав хӗрарӑм, ача ҫуратма вӑхӑчӗ
ҫитнӗскер, тертленсе кӑшкӑрать. 3 Унтан тӳпере
тепӗр паллӑ курӑнчӗ: ҫичӗ пуҫлӑ, вунӑ мӑйракаллӑ,
ҫичӗ пуҫ кӑшӑллӗ пысӑк та хӗрлӗ аҫтаха. 4 Вӑл
хӳрипеле сулчӗ те тӳпери ҫӑлтӑрсен виҫҫӗмӗш
пайне ҫӗр ҫине шӑлса тӑкрӗ. Хӗрарӑм
ҫуратсассӑнах унӑн ачине ҫисе ярасшӑн пулса,
аҫтаха хӗрарӑм умне тӑчӗ. 5 Хӗрарӑм ывӑл ача
ҫуратрӗ. Ҫав ывӑлӑн мӗн пур халӑхсене тимӗр
туяпа пӑхмалла пулӗ. Ҫавӑнпа та ывӑл ачана Турӑ
патне, Унӑн престолӗ патне илчӗҫ. 6 Вара хӗрарӑм
пуш хире тарчӗ. Унта Турӑ ун валли вырӑн
хатӗрлесе хунӑ, ҫавӑнта хӗрарӑма пин те ик ҫӗр
утмӑл кун хушши пӑхса усрамалла пулнӑ.
7 Унтан тӳпере вӑрҫӑ пуҫланса кайрӗ. Михаилпа
унӑн ангелӗсем аҫтахапа ҫапӑҫрӗҫ. Аҫтахапа унӑн
ангелӗсем те ӑна хирӗҫ вӑрҫма тухрӗҫ. 8 Анчах та
вӗсем, ҫӗнтереймен пирки, тӳпери хӑйсен вырӑнне
ҫухатрӗҫ. 9 Ҫапла вара пысӑк аҫтахана, шуйттан
тата сатана теекен авалхи ҫӗлене, пӗтӗм ҫут

тĕнчене илĕртсе улталаканскере, çĕр çине çапса
антарчĕç. Хăйĕнпе пĕрле тата унăн ангелĕсене те
çĕре ӳкерчĕç. 10 Унтан эпĕ тӳперен çапла калакан
вăйлă сасă илтрĕм: «Ĕнтĕ Туррăмăрăн çăлас вăхăчĕ,
хăвачĕ, патшалăхĕ çитрĕ; ĕнтĕ Унăн Христосĕн
влаçĕ çитрĕ. Мĕншĕн тесен ĕненекен
тăванăмăрсем çинчен Туррăмăра кунĕн-çĕрĕн элек
паракан элексĕне çапса антарчĕç. 11 Вĕсем ăна
Путек Юнĕпе тата хăйсем каласа пĕлтернĕ сăмахпа
çĕнтерчĕç, вилĕмрен хăрамасăр пурăнăçне
шеллемерĕç. 12 Эй, çӳлти тӳпе! Эй, çӳлте
пурăнакансем! Халĕ ĕнтĕ савăнмаллипе савăнăр!
Анчах та сире, çĕрпе тинĕс çинче пурăнакансене,
хуйхă пулĕ, мĕншĕн тесен сирĕн патăра шуйттан
анчĕ! Хăйĕн вăхăчĕ сахал пулнине пĕлнĕрен вăл
хаярлăхпа тулса çитрĕ!»
13 Аçтаха, хăйне çĕр çине çапса антарнине туйса
илсен, ывăл ача çуратнă хĕрарăма йĕрлеме
тытăнчĕ. 14 Анчах та хăйĕн валли хатĕрленĕ пуш
хирти вырăна вĕçсе каймашкăн хĕрарăма пысăк
ăмăрт кайăкăн икĕ çунатне панă пулнă. Çавăнта,
çĕленрен аякра, ăна виçĕ çул çурă пăхса усрамалла
пулнă. 15 Вара, хĕрарăма шывпа юхтарса ярас тесе,
ун хыçĕнчен хайхи çĕлен хăйĕн çăварĕнчен юхан
шыв пек шыв кăларса ячĕ. 16 Анчах та хĕрарăма çĕр
пулăшрĕ: вăл уçăлчĕ те аçтаха çăварĕнчен тухнă
юхан шыва çăтса ячĕ. 17 Вара хĕрарăма тарăхса
çитнĕ аçтаха хĕрарăм йăхĕнчи ытти çынсемпе, Турă
пил-хушăвĕсене тата Иисус Христос вĕрентĕвне
тытса пыракансемпе, çапăçма кайрĕ.

### Икĕ тискер кайăк

13 Тинĕс хĕрринчи хăйăр çинче тăнă чухне эпĕ
тинĕсрен тухакан çичĕ пуçлă, вунă
мăйракаллă тискер кайăка куртăм. Мăйракисем
çинче унăн вунă пуç кăшăлĕччĕ, кашни пуçĕ çинех
Турра хурлакан пĕрер ят çырнă. 2 Манăн умри
тискер кайăк барс евĕрлĕрехчĕ. Урисем унăн упан
пек, çăварĕ арăсланăн пек. Аçтаха ăна хăйĕн вăйне,
престолне тата пуç пулмалли аслă ирĕкне панă.
3 Пăхрăм та, унăн пуçĕсенчен пĕри вилмеллех
аманнă пек курăнчĕ, анчах та çав вилмеллех суран
тӳрленчĕ. Тискер кайăка курнипе пĕтĕм тĕнче
тĕлĕнчĕ. Вара пурте тискер кайăка вăй-хăват панă
аçтахана пуççапрĕç. Унтан тискер кайăка çапла
каласа пуççапрĕç: «Çак тискер кайăк пекки урăх
пур-и? Кам унпа çапăçма пултарайĕ?»
5 Тискер кайăка мăнкăмăлланса калаçмалăх, Турра
хурламалăх чĕлхе-çăвар тата хĕрĕх икĕ уйăх хушши
усал тумалăх ирĕк панăччĕ. 6 Вара вăл Турă ятне,
Вăл пурăнакан вырăна, тӳпере пурăнакансене хур
тăвас тесе, Турра хурлама çăварне уçрĕ. 7 Тата çак
тискер кайăка сăваплисемпе çапăçма, вĕсене
çĕнтерме, тĕрлĕ йăх-ăрусемпе, тĕрлĕ чĕлхеллĕ
тĕрлĕ халăхсемпе пуç пулма ирĕк панăччĕ.
8 Тĕнчене пултаричченех пусса Турра кӳнĕ Путекĕн
пурăнăç кĕнекине çĕр çинче пурăнакансенчен
камăн ятне çырса хуман, çавсем пурте ăна
пуççапĕç. 9 Илтме хăлха пурри илттĕр. 10 Тыткăна
илсе каякана хăйне тыткăна илсе кайĕç; хĕçпе
вĕлерекене хăйне хĕçпе вĕлерĕç . Çав саманара
сăваплисен чăтăмлă та çирĕп ĕненӳллĕ пулмалла.
11 Унтан эпĕ çĕр ăшĕнчен тухакан тепĕр тискер
кайăка куртăм. Унăн Путекĕнни пек икĕ мăйрака,
калаçасса хăй аçтаха пек калаçать. 12 Пĕрремĕш
тискер кайăкăн вăй-хăватне ăна та панă, вăл –
пĕрремĕш тискер кайăк умĕнче ĕçлесе тăраканĕ,
пулăшаканĕ. Çавскер пĕтĕм çĕре, çĕр çинче
пурăнакансене вилмеллех аманса тӳрленнĕ тискер
кайăка пуççаптарасшăн. 13 Вăл тĕлĕнмелле
паллăсем кăтартать: çынсен куçĕ умĕнчех тӳперен
çĕр çине вут-çулăм антарать. 14 Пĕрремĕш тискер
кайăк умĕнче тĕлĕнмелле паллăсем кăтартса, вăл
çĕр çинче пурăнакансене илĕртсе улталать. Вăл
çынсене хĕçпе суранланнă, анчах та чĕрĕ тискер
кайăкăн сăнарне ăсталама хистет. 15 Çав сăнар
калаçма та, хăйне пуççапас теменнисене
вĕлерттерме те пултартăр тесе, иккĕмĕш тискер
кайăка малтанхин сăнарĕ ăшне чун вĕрсе кĕртме
ирĕк панă. 16 Вăл пур çынсене те: аслисемпе
кĕçĕннисене те, пуянсемпе чухăнсене те,
ирĕклисемпе чурасене те – сылтăм алли е çамки
çине çыру палли лартма хистет. 17 Камăн çак çыру
палли çук, вăл сутма та, илме те пултараймасть.
Çыру паллинче тискер кайăкăн ятне е çав ята
палăртакан хисепе çырнă. 18 Кунта ăслăлăх кирлĕ.
Камăн ăсĕ пур, вăл тискер кайăк ятне палăртакан
хисепе хăех тавçăрса илтĕр. Çав хисеп – этемле
хисепех: улт çĕр утмăл улттă.

### Путек Сион тăвĕ çинче

14 Унтан эпĕ пăхрăм та, акă, Сион тăвĕ çинче
Путек тăнине куртăм. Унпа пĕрле тата çĕр
хĕрĕх тăватă пин çынччĕ. Вĕсен çамкисем çинче
Унăн Ашшĕн ячĕччĕ . 2 Вара тӳперен шыв кĕрленĕ
пек, вăйлă аслати сасси пек сасă илтрĕм. Тата
кĕслисене каласа ларакан кĕслеçĕсен сасси пек
сасă илтрĕм. 3 Престолпа тăватă чĕр чун умĕнче,
ватăсем умĕнче çав çынсем çĕнĕ юрă пек юрă
юрлаççĕ. Çĕр çинчи пурăнăç тыткăнĕнчен тӳлесе
илнĕ çав çĕр хĕрĕх тăватă пин çынсăр пуçне никам
та ку юрра юрлама пултараймарĕ. 4 Юрлаканĕсем
хĕрарăмпа çывăрса вараланман, таса çынсем.
Путек кирек ăçта кайсассăн та, вĕсем Ун хыçĕнчен
çӳреççĕ. Вĕсене Турăпа Путекĕн малтанхисем
пулмашкăн çынсем хушшинчен суйласа, тӳлесе
илнĕ. 5 Вĕсен чĕлхи-çăварĕ суялăха пĕлмест: Турă
престолĕ умĕнче вĕсем таса.

### Виçĕ ангел

6 Унтан эпĕ çӳл тӳпере вĕççе иртекен тепĕр ангела
куртăм. Çĕр çинче пурăнакан тĕрлĕ чĕлхеллĕ йăх-
ăрăва, халăха пĕлтермешкĕн çав ангелăн ĕмĕрлĕх
Ырă Хыпар пурччĕ. 7 Вара вăл вăйлă саслăн çапла
каларĕ: «Турăран хăрăр, Ăна мухтăр, мĕншĕн тесен

Унӑн суд тумалли вӑхӑчӗ ҫитрӗ. Тӳпене, ҫӗре,
тинӗсе тата ҫӑлкуҫсене Пултаракана пуҫҫапӑр!»
8 Ун хыҫӗнчен тепӗр ангел вӗҫсе иртрӗ. «Аслӑ хула
Вавилон тӗп пулчӗ, тӗп пулчӗ! Мӗншӗн тесен ҫав
хула хӑй аскӑнлӑхӗн хаяр эрехне мӗн пур халӑхсене
ӗҫтерчӗ!» – терӗ ҫав ангел.
9 Вара ун хыҫӗнчен виҫҫӗмӗш ангел вӗҫсе иртрӗ.
Вӑл вӑйлӑ саслӑн ҫапла каларӗ: «Кам тискер
кайӑкпа унӑн сӑнарне пуҫҫапать, кам хӑйӗн ҫамки
е алли ҫине тискер кайӑкӑн ҫыру паллине
ларттарать, 10 ҫавӑн Турӑ тарӑхӑвӗн куркинче
хатӗрленӗ Турӑ ҫиллин хаяр эрехне ӗҫме тивӗ. Ӑна
святой ангелсемпе Путек куҫӗ умӗнчех вутлӑ кӳкӗрт
ӑшӗнче асаплантарӗҫ. 11 Ҫав асап вучӗн тӗтӗмӗ
ӗмӗр-ӗмӗр йӑсӑрланса тӑрӗ. Тискер кайӑкпа унӑн
сӑнарне пуҫҫапакансем, унӑн ятне ҫыртарма
килӗшнисем кунӗн-ҫӗрӗн канлӗх тупаймӗҫ.
12 Ҫавӑнпа Турӑ пил-хушӑвӗсене тытса пыракан,
Иисуса ӗненекен сӑваплӑ ҫынсене тӳсӗмлӗх кирлӗ
пулӗ».
13 Унтан эпӗ тӳперен хама ҫапла калакан сасӑ
илтрӗм: «Ҫырса хур, – терӗ ҫав сасӑ, – Хуҫамӑра
ӗненсе вилнисем, ҫак вӑхӑтран пуҫласа, телейлӗ
пулӗҫ». «Ҫӑнах та ҫапла, – тет Сывлӑш, – вӗсем ӗнтӗ
хӑйсен ӗҫӗсенчен канӗҫ, мӗншӗн тесен ӗҫӗсем
хӑйсемех вӗсем ҫинчен калӗҫ».

## Вырма вӑхӑчӗ

14 Вара эпӗ пӑхрӑм та, акӑ, шурӑ пӗлӗт куртӑм.
Пӗлӗт ҫинче Этем Ывӑлӗ евӗрлӗскер ларать; пуҫӗ
ҫинче – ылтӑн пуҫ кӑшӑлӗ, аллинче – ҫивӗч ҫурла.
15 Унтан тӳпери Турӑ Ҫуртӗнчен тепӗр ангел тухрӗ
те пӗлӗт ҫинче ларакана вӑйлӑ саслӑн ҫапла
каларӗ: «Ҫурлуна ил те вырмашкӑн пуҫла, мӗншӗн
тесен вырма вӑхӑчӗ ҫитрӗ, ҫӗр ҫинче тыр-пул пулса
ҫитнӗ!» 16 Вара пӗлӗт ҫинче лараканӗ ҫурлипе ҫӗр
ҫийӗн сулса ячӗ те ҫӗр ҫинчи тыр-пула вырса илчӗ.
17 Кайран тӳпери Турӑ Ҫуртӗнчен ҫурлаллӑ урӑх
ангел тухрӗ, унӑн та ҫурли ҫивӗччӗ. 18 Тата тепӗр
ангелӗ, вутпа пуҫ пулма ирӗк илнӗскер, парне
вырӑнӗ патӗнчен пычӗ. Вара вӑл ҫивӗч ҫурлаллӑ
ангела хыттӑн кӑшкӑрса ҫапла каларӗ: «Ҫивӗч
ҫурлуна ил те ҫӗр ҫинчи иҫӗм ҫырли сапакисене
кас, мӗншӗн тесен иҫӗм ҫырли пиҫсе ҫитнӗ!»
19 Хайхи ангел ҫурлипе ҫӗр ҫийӗн сулса ячӗ те иҫӗм
ҫырлине касса пуҫтарса илчӗ. Вара ӑна Турӑ ҫиллин
пысӑк юхтаркӑчне пӑрахрӗ. 20 Ҫав ҫырлана вара
хула тулашӗнчи сӗткен пусса кӑлармалли
юхтаркӑчра таптарӗҫ, юхтаркӑчран юн тапса тухрӗ.
Ҫав юн, лаша йӗвенӗ таран тулса, виҫ ҫӗр ҫухрӑма
яхӑн сарӑлса юхрӗ.

## Юлашки инкексем

15 Унтан эпӗ тӳпере хӑватлӑ та тӗлӗнмелле
тепӗр паллӑ асӑрхарӑм: унта юлашки ҫичӗ
инкеклӗ ҫичӗ ангел курӑнчӗҫ. Ҫав юлашки
инкексемпе Турӑ ҫилли иртсе каймалла. 2 Эпӗ
темскер, вутпа хутӑштарнӑ кӗленче тинӗс
евӗрлӗскер, куртӑм. Ҫав кӗленче тинӗс ҫинче
тискер кайӑкпа унӑн сӑнарне, ҫыру паллипе унӑн
ячӗн хисепне ҫӗнтернисем тӑраҫҫӗ. Вӗсем, Турӑ
кӗслине тытса, 3 Турӑ чурин Моисейӑн тата Путекӗн
юррине ҫапла каласа юрлаҫҫӗ: «Эй, Хуҫамӑр, Пурне
те тытса тӑракан Туррӑмӑр, Санӑн ӗҫӳсем аслӑ та
тӗлӗнмелле! Эй, сӑваплисен Патши! Санӑн ҫулусем
тӳрӗлӗхлӗ те чӑн! 4 Эй, Хуҫамӑр! Кам Санран
хӑрамасӑр тӑрайтӑр? Кам Санӑн ятна мухтамӗ?
Мӗншӗн тесен Эсӗ пӗртен-пӗр таси. Мӗн пур
халӑхсем Сана пырса пуҫҫапӗҫ, мӗншӗн тесен
Санӑн тӳрӗлӗхӳ куҫкӗретех!»
5 Унтан эпӗ пӑхрӑм та, акӑ, тӳпере Турӑ Ҫурчӗ –
Таса кӗлӗ чатӑрӗ – уҫӑлнине куртӑм. 6 Вара тӳпери
Турӑ Ҫуртӗнчен ҫичӗ инкеклӗ ҫичӗ ангел тухрӗҫ.
Вӗсем таса та шурӑ йӗтӗн тумтир тӑхӑннӑ, кӑкӑр
урлӑ ылтӑн хӑю ҫыхнӑ. 7 Вара ҫичӗ чӗр чунтан пӗри
ҫичӗ ангела ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнакан Туррӑн ҫиллипе
тултарнӑ ҫичӗ ылтӑн курка пачӗ. 8 Ҫавӑнтах тӳпери
Турӑ Ҫурчӗ Турӑ мухтавӗн, Унӑн вӑй-хӑвачӗн
тӗтӗмӗпе тулса ларчӗ. Ҫичӗ ангел аллинчи ҫичӗ
инкек иртмесӗр ҫав Турӑ Ҫуртне кӗме никам та
пултараймарӗ.

## Турӑ ҫиллин куркисем

16 Унтан эпӗ Турӑ Ҫуртӗнче вӑйлӑ сасӑ янӑраса
кайнине илтрӗм. «Кайӑр та, – терӗ ҫав сасӑ
ҫичӗ ангела, – Турӑ ҫиллин ҫичӗ куркине ҫӗр ҫине
тӑкӑр».
2 Пӗрремӗш ангелӗ кайрӗ те хӑй куркине ҫӗр ҫине
тӑкрӗ. Ҫав самантрах тискер кайӑкӑн ҫыру паллине
ларттарнӑ, унӑн сӑнарне пуҫҫапакан ҫынсен ӳчӗ
пӳрлӗ, хӑрушӑ та йӗрӗнмелле суранпа витӗнчӗ.
3 Иккӗмӗш ангелӗ хӑй куркине тинӗсе тӑкрӗ. Ҫав
самантрах тинӗс шывӗ вилнӗ ҫын юнӗ евӗрлӗ
пулса тӑчӗ. Тинӗсри мӗн пур чӗрӗ чун вилсе пӗтрӗ.
4 Виҫҫӗмӗш ангел хӑй куркине юхан шывсемпе
ҫӑлкуҫсем ҫине тӑкрӗ, вара вӗсем те юн пулса
тӑчӗҫ. 5 Унтан эпӗ шыв ангелӗ ҫапла каланине
илтрӗм: «Эй, Хуҫамӑр! Эсӗ пур, яланах пулнӑ. Эсӗ
тӗрӗслӗхлӗ те таса, мӗншӗн тесен ҫапла суд турӑн.
6 Сӑваплисемпе пророкусен юнне юхтарнӑшӑн Эсӗ
вӗсене юн ӗҫтертӗн. Вӗсем ҫавна тивӗҫлӗ те».
7 Вара эпӗ парне вырӑнӗ енчен тепӗр сасӑ илтрӗм.
«Эй, Хуҫамӑр, Пурне те тытса тӑракан Туррӑмӑр!
Санӑн суду тӳрӗлӗхлӗ те чӑн!» – терӗ ҫав сасӑ.
8 Тӑваттӑмӗш ангелӗ хӑй куркине хӗвел ҫине
тӑкрӗ. Хӗвеле ҫӗр ҫинчи ҫынсене ҫунтарса яма ирӗк
панӑччӗ. 9 Ӗнтӗ ҫынсене вӑйлӑ шӑрӑх ҫунтара
пуҫларӗ, анчах та вӗсем, ӳкӗнсе Турра мухтас
вырӑнне, инкексене пӗтерме пултаракан Турӑ ятне
хурларӗҫ.
10 Пиллӗкмӗш ангел хӑй куркине тискер кайӑк
престолӗ ҫине тӑкрӗ. Ҫав самантрах тискер кайӑк
патшалӑхӗ пӗтӗмпех сӗм-тӗттӗмлӗх ӑшне путрӗ.
Асапа тӳсеймесӗр ҫынсем чӗлхисене ҫырта-ҫырта
лартрӗҫ. 11 Анчах та, хӑйсен ӗҫӗсемшӗн ӳкӗнес

вырăнне, вĕсем инкек-асапĕсемшĕн Çӳлти Турра
хурларĕç.
12 Улттăмĕш ангел хăй куркине аслă Ефрат юхан
шывне тăкрĕ. Вара, хĕвел тухăçĕнчен килекен
патшасемшĕн çул хатĕр пултăр тесе, Ефрат шывĕ
типсе ларчĕ. 13 Çавăн чухне эпĕ пăхрăм та аçтаха
çăварĕнчен, тискер кайăк çăварĕнчен тата суя
пророк çăварĕнчен шапа евĕрлĕ виçĕ усал сывлăш
тухнине куртăм. 14 Кусем – тĕлĕнмелле паллăсем
кăтартакан усал сывлăшсем. Пурне те тытса
тăракан Туррăн çак аслă кунĕнче патшасене вăрçа
пухас тесе, усал сывлăшсем пĕтĕм тĕнчери çĕр-
шывсен патшисем патне тухаççĕ. 15 Итлĕр! Эпĕ,
вăрă пек, кĕтмен çĕртен пырăп. Сыхă тăракан,
çарамас тăрса юлса намăса кăтартас марччĕ тесе,
тумтирне упраса пурăнакан телейлĕ! 16 Вара
патшасене пĕр çĕре, еврейла Армагеддон текен
вырăна, пухрĕç.
17 Çиччĕмĕш ангел хăй куркине сывлăша тăкрĕ.
Çав самантрах тӳпери Турă Çурчĕн престолĕ
патĕнчен: «Мĕн пулмалли пулчĕ!» – текен вăйлă
сасă илтĕнчĕ. 18 Вара çиçĕмсем ялтăртатма
пуçларĕç, аслати кĕрлесе аватрĕ. Çав тери вăйлăн
çĕр чĕтренчĕ. Кунашкалли этем çĕр çинче пурăнма
пуçланăранпа та пулман! 19 Аслă хула виçĕ пая
арканса кайрĕ, чăн Турра пĕлмен халăхсен хулисем
ишĕлсе анчĕç. Аслă Вавилон хулине те, Хăйĕн
çиллин куркине ĕçтерес тесе, Турă Хăй асĕнчех
тытрĕ. 20 Мĕн пур утравсем çухалчĕç, тусем тăрса
юлмарĕç. 21 Çынсем çине пĕлĕтрен темиçе пăт
йывăрăш пăр катăкĕсем çурĕç. Çынсем, çакнашкал
пăр çунин инкекĕ пит пысăк пулнăран, асапа
тӳсеймесĕр, Турра ылханчĕç.

### Аскăн хĕрарăмпа тискер кайăк

17 Унтан çичĕ куркаллă çичĕ ангелтан пĕри ман
патăма пычĕ те çапла каларĕ: «Курсам, эпĕ
сана нумай юхан шыв çинче ларакан аскăнран та
аскăн хĕрарăма епле суд тунине кăтартăп». 2 Çĕр
çинчи патшасем унпа асса пурăнчĕç, çĕр çинче
пурăнакансем унăн ясарĕн эрехĕпе ӳсĕр çӳрерĕç».
3 Вара мана, Святой Сывлăш витĕмĕпе, ангел пуш
хире ертсе кайрĕ. Унта эпĕ йăм-хĕрлĕ тискер кайăк
çине утланнă хĕрарăма куртăм. Тискер кайăкĕ çине
йăлтах Турра хурлакан ятсем çырса тултарнă, хăй
çичĕ пуçлă та вунă мăйракаллă. 4 Хĕрарăмĕ тĕксĕм
хĕрлĕ хăмач тумтир тăхăннă, ылтăн капăрчăксемпе,
хаклă йышши чулсемпе, ĕнчĕпе илемленнĕ.
Аллине хăй ылтăн курка тытнă, курка тулли вара –
унăн аскăнлăхĕн ирсĕрлĕхĕпе тасамарлăхĕ. 5 Çамки
çине вăрттăн пĕлтерĕшлĕ ят çырса хунă: «Çĕр
çинчи аскăн хĕрарăмсен, ирсĕрлĕхсен амăшĕ –
аслă хула Вавилон». 6 Эпĕ пăхрăм та – çак хĕрарăм
сăваплисен юнне, Иисус çинчен çирĕплетсе
пĕлтерекенсен юнне ĕçнипе ӳсĕррине куртăм. Ăна
курсассăн вара тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. 7 «Эсĕ
мĕншĕн тĕлĕнетĕн? – тесе ыйтрĕ манран ангел. –
Эпĕ сана çак хĕрарăм тата вăл утланнă çичĕ пуçлă
та вунă мăйракаллă тискер кайăк мĕне пĕлтернине
ăнлантарса парăп. 8 Çак эсĕ курнă тискер кайăк
чĕрĕччĕ, халĕ вăл вилĕ. Анчах та вăл тĕпсĕрлĕхрен
каллех чĕрĕлсе тухĕ те тĕп пулĕ. Çĕр çинче
пурăнакансенчен камсен ятне тĕнче
пуçланнăранпах пурăнăç кĕнекине çырса хуман,
çавсем тискер кайăка курсан тĕлĕнĕç. Мĕншĕн
тесен вăл чĕрĕччĕ, халĕ вилĕ, унтан каллех чĕрĕлсе
тухĕ. 9 Çакна ăнланма ăслăлăх кирлĕ. Тискер
кайăкăн çичĕ пуçĕ хĕрарăм ларакан çичĕ сăрта
10 тата çичĕ патшана пĕлтерет. Çиччĕшĕнчен
пиллĕкĕшĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, пĕри çаплах патшара
ларать, юлашки вара çĕр çине килмен-ха. Анчах та
вăл, килсессĕн те, нумайлăха тытăнса тăраймĕ.
11 Тахçан чĕрĕ пулнă, халĕ вилĕ тискер кайăк çичĕ
патшаран пĕрне, саккăрмĕшне пĕлтерет. Вăл та тĕп
пулĕ. 12 Эсĕ курнă вунă мăйрака вунă патшана
пĕлтерет. Хальлĕхе вĕсем патшана ларайман-ха,
анчах та тискер кайăкпа пĕрле вĕсем пĕр
самантлăх влаçра пулса курĕç. 13 Вунă патшин те
пĕр шухăш. Вĕсем хăйсен вăй-хăватне, влаçне
тискер кайăка парас теççĕ. 14 Вĕсем Путекпе
çапăçĕç, анчах та Путек вĕсене çĕнтерĕ. Мĕншĕн
тесен Вăл – хуçасенĕн Хуçи, патшасенĕн Патши.
Унпа пĕрле вара – Хăй чĕнсе илнисем, суйласа
илнисем, шанчăклисем».
15 Унтан ангел мана çапла каларĕ: «Хайхи эсĕ
курнă аскăн хĕрарăм ларакан юхан шывсем тĕрлĕ
чĕлхеллĕ халăха, тĕрлĕ йăх-ăрăва пĕлтереççĕ. 16 Эсĕ
курнă тискер кайăкăн вунă мăйраки аскăн
хĕрарăма курайми пулĕç, ăна çаратса çаппа-
çарамас хăварĕç, ăна çийĕç, вутра çунтарĕç.
17 Мĕншĕн тесен Турă вунă мăйракана – çав вунă
патшана – Хăйĕн ирĕкне тутарĕ: Турă сăмахĕ
пурнăçланиччен вĕсен тискер кайăка пуç пулма
ирĕк памалла. 18 Эсĕ курнă хĕрарăм вара çĕр çинчи
патшасемпе хуçаланакан аслă хулана пĕлтерет».

### Вавилон хулине пĕтерни

18 Çакăн хыççăн эпĕ тӳперен анакан тепĕр
ангела куртăм. Ăна питĕ пысăк влаç панăччĕ.
Унăн чап-мухтавĕпе çĕр пичĕ те çуталса кайрĕ.
2 Вара вăл вăйлă саслăн кăшкăрса каларĕ: «Тĕп
пулчĕ Вавилон! Виçесĕр аскăнчăк тĕп пулчĕ! Вăл
шуйттан кил-çурчĕ, тĕрлĕрен усал сывлăш
пурăнмалли вырăн, тĕрлĕрен таса мар та
йĕрĕнмелле вĕçен кайăк йăви пулса тăчĕ. Мĕншĕн
тесен вăл мĕн пур халăхсене ясарлăхăн хаяр эрехне
ĕçтерсе ӳсĕртрĕ. 3 Çĕр çинчи патшасем унпа асса
пурăнчĕç, унăн пысăк пуянлăхĕпе çĕр çинчи
купсасем пуйса кайрĕç».
4 Тата эпĕ тӳперен урăх сасă илтрĕм. «Эй, халăхăм!
– терĕ çав сасă. – Çак хулан çылăхлă ĕçĕсене
хутшăнмалла ан пултăр тесен, ун çине янă инкеке
тӳсмелле ан пултăр тесен, унтан тухса кай!
5 Мĕншĕн тесен çак хулан çылăхĕсем тӳпе таранах
çĕкленчĕç, унăн усал ĕçĕсене Турă аса илчĕ ĕнтĕ.
6 Вавилон сире епле асап кăтартрĕ, эсир те ăна

çаплах тавăрса парăр. Ĕçĕсене кура ăна икĕ хут та
ытларах тавăрса парăр. Хăвăра ĕçтернĕ куркана
эсир ун валли икĕ хут та хаяртарах эрех ярса
хатĕрлĕр. 7 Вăл мĕн чухлĕ чаплăланчĕ, пуянлăхĕпе
мĕн чухлĕ киленчĕ, ăна çавăн чухлĕ асаппа хуйхă
кăтартăр. Мĕншĕн тесен вăл çаплах хăй ăшĕнче:
„Эп патшара ларатăп, эп тăлăх арăм мар, нихçан та
хурлăх курмăп“, – тет. 8 Çавăнпа та пĕр кун
хушшинчех ун çине тĕрлĕ инкек-синкек – вилĕм,
хуйхă, выçлăх – йăтăнса анĕ. Ăна вутра çунтарса
ярĕç, мĕншĕн тесен ăна суд тăвакан Хуçа Турă
хăватлă.
9 Çĕр çинчи патшасем, унпа асса та иртĕхсе
пурăннăскерсем, унăн пушарĕн тĕтĕмне курсассăн,
уншăн ӳлесе те татăлса йĕрĕç. 10 Унăн асапĕсенчен
хăранипе аякра тăрса, вĕсем çапла калĕç: „Эй, аслă
хула! Эй, тĕреклĕ Вавилон хули! Хуйхă çитрĕ сана,
пысăк хуйхă! Пĕр самантрах санăн судпала
айăпланмалла пулчĕ“. 11 Вара хăйсен таварĕсене
никам та илекен пулманран çĕр çинчи купсасем те
ӳлесе, татăлса йĕрĕç. 12 Вĕсен таварĕсем – ылтăн,
кĕмĕл, хаклă йышши чулсем, ĕнчĕ, виссонпа
порфира , пурçăнпа йĕпкĕн хĕрлĕ пир-авăр, ырă
шăршăллă йывăç, слон шăмминчен, паха
йывăçран, пăхăртан, тимĕртен, мрамортан тунă
япаласем, 13 корицăпа фимиам, мирăпа ладан,
хĕрлĕ эрехпе олив çăвĕ, çăнăх, тулă, выльăх-
чĕрлĕх, сурăхсем, лашасемпе кӳмеллĕ урапасем,
чурасем – никама та кирлĕ пулмĕç. 14 Ĕнтĕ санăн
кăмăлланă çимĕçӳсем те çук, пуянлăхупа чаплă
капăрлăху та пĕтрĕ, вĕсене эсĕ тек нихăçан та
каялла тавăраймăн. 15 Çак тĕрлĕ тавара Вавилонра
сутса пуйнисем унăн асапĕсенчен хăранипе аякра
тăрса, ӳлесе те татăлса йĕрсе, 16 çапла калĕç: „Эй,
аслă хула! Хуйхă çитрĕ сана, пысăк хуйхă! Эсĕ
виссонпа порфира, хĕрлĕ хăмач тумтир тăхăнаттăн,
ылтăнпа тата хаклă йышши чулсемпе, ĕнчĕпе
капăрланаттăн! 17 Акă ĕнтĕ, пĕр самантрах çав
тĕрлĕ пуянлăху пĕтмелле пулчĕ! Карап
капитанĕсем, караппа çӳрекенсем, моряксем, тинĕс
ĕçченĕсем – пурте карапĕсемпе хуларан аякра
чарăнса тăчĕç. 18 Пушар тĕтĕмне курсассăн вара
вĕсем кăшкăрса ячĕç: «Çак аслă хулапа танлашма
пултараканни урăх пур-и?!» 19 Хăйсем хулашăн
хурланнине палăртса, ӳлесе йĕре-йĕре вĕсем çапла
каларĕç: «Эй, аслă хула! Хуйхă çитрĕ сана, пысăк
хуйхă! Караплă çынсем сан мулна пула пуйнăччĕ.
Акă ĕнтĕ, пĕр самантрах эсĕ çука юлтăн!» 20 Эй, тӳпе!
Эй, мĕн пур сăваплă апостолсемпе пророксем! Çак
хулана эсир тăвас тенĕ суда Турă тунăшăн савăнса
хĕпĕртĕр!
21 Унтан пĕр хăватлă ангел арман чулĕ пек чул
илчĕ те ăна тинĕсе ывăтрĕ. «Аслă Вавилон хулин те
çакнашкалах пĕтмелле пулĕ, унăн çĕр питĕнчен
çухалмалла, – терĕ вăл. 22 – Кунта текех кĕсле
калани те, юрлани те, шăхлич калани те, труба
сасси те илтĕнмĕ. Кунта текех ăстасем те, ал ĕçĕ
тăвакансем те пулмĕç. Кунта текех ал арманĕ сасси
те илтĕнмĕ. 23 Кунта текех çутаткăç та çунмĕ, хĕрпе
каччă сасси те янăрамĕ. Сан купсусем çĕр çинче
чаплăран та чаплă хуçасемччĕ, санăн асамлăхупа
мĕн пур халăх улталаннăччĕ. 24 Анчах та çак хула
çылăхĕсене пула сăваплисемпе пророксен, çĕр
çинче вĕлернисен пурин те – юнĕ юхнă!»

### Вавилона суд тунăшăн Турра мухтани

19 Çакăн хыççăн эпĕ тӳпере йышлă халăх сасси
пек вăйлă сасăсем илтрĕм. «Аллилуия! – тесе
кăшкăрчĕç вĕсем. – Çăлăнăçпа мухтав та, чыспала
хăват та пирĕн Хуçамăрта. 2 Мĕншĕн тесен Унăн
сучĕ тӳрĕлĕхлĕ те чăн. Çав виçесĕр аскăнчăка,
пĕтĕм çĕре астарса яракана, Турă суд туса
айăпларĕ, Хăйĕн чурисен юнĕшĕн тавăрчĕ».
3 «Аллилуия! – терĕç тепĕр хут. – Унăн тĕтĕмĕ ĕмĕр-
ĕмĕрех тӳпене çĕкленет!» 4 Унтан çирĕм тăватă
ватăпа тăватă чĕр чун престол çинче ларакан
Турра: «Аминь! Аллилуия!» – тесе çĕре ӳксе
пуççапрĕç.

### Путекĕн туйĕ

5 Вара престол патĕнчен çапла калакан сасă
илтĕнчĕ: «Эй, Туррăн мĕн пур чурисем, мĕн пур
Унран хăракансем, асли те, кĕçĕнни те – Турра
мухтăр!» 6 Каллех эпĕ йышлă халăх сасси пек сасă
илтрĕм. Çав сасă шыв кĕрлени пек, вăйлă аслати
сасси пек каларĕ: «Аллилуия! Пурне те тытса
тăракан Хуçа Туррăмăр патшана ларчĕ! 7 Ĕнтĕ
савăнса хĕпĕртер те Ăна мухтар, мĕншĕн тесен
Путекĕн туйĕ çитрĕ. Ĕнтĕ çураçнă хĕрĕ те
капăрланса хатĕрленчĕ. 8 Ăна таса та шурă виссон
тăхăнтартрĕç. Виссон тумтир вара сăваплисен
тӳрĕлĕхне пĕлтерет».
9 Унтан ангел мана: «Путекĕн туйне чĕннисем
телейлĕ», – тесе çырма хушрĕ. Тата вăл мана çапла
каларĕ: «Ку сăмахсем – Туррăн чăн сăмахĕсем».
10 Вара эпĕ ун ури умне ӳксе пуççапрăм, анчах та
вăл мана: «Асту, кунашкал ан хăтлан, – терĕ. – Эпĕ
сан пекех, Иисус çинчен çирĕплетсе пĕлтерекен
тăванусем пекех, Турă чури кăна. Турра пуççап!
Мĕншĕн тесен Иисус çинчен çирĕплетсе пĕлтерни
– пророкла каланин тĕшши пулса тăрать».

### Шурă ут çинчи юланутçă

11 Унтан эпĕ пăхрăм та тӳпе уçăлса кайнине тата
шурă юланута куртăм. Тӳрĕ суд тунăран, çĕнтерӳллĕ
пулнăран юланутçине Шанчăкли тата Чăнни теççĕ.
12 Куçĕсем Унăн вут çулăмĕ пек, пуçĕ çинче темĕн
чухлĕ пуç кăшăлĕсем. Çавсем çине Унăн ятне
çырнă, Хăйĕнсĕр пуçне вăл ята никам та пĕлмест.
13 Вăл юнпа хĕрелнĕ тумтир тăхăннăччĕ. Унăн ячĕ –
Турă Сăмахĕ. 14 Тӳпери йышлă çар ун хыççăн шурă
утсем çинче пырать, хăйсем таса та шурă виссон
тумланнă. 15 Унăн чĕлхи-çăварĕнчен çивĕч хĕç тухса
тăрать. Çав хĕçпе Вăл халăхсене çĕнтерĕ. Вĕсене
Вăл тимĕр туяпа пăхĕ. Вăл Пурне те тытса тăракан

Турă çиллин эрехне юхтаркăчра таптаса кăларĕ.
[16] Тумтирĕпе пĕççи çине ят çырса хунă: патшасен
Патши, хуçасен Хуçи.
[17] Унтан эпĕ хĕвел çинче тăракан пĕр ангела
куртăм. Çӳл тӳпере вĕçекен кайăксене вăл вăйлă
саслăн çапла каларĕ: «Вĕçĕр, вĕçĕр! Патшасен,
хуçасен, çар пуçĕсен, утсемпе юланутçăсен
виллисене, ирĕклисемпе чурасен виллисене,
аслисемпе кĕçĕннисен виллисене сăхмашкăн
Туррăн аслă каçхи апатне пуçтарăнăр!» [19] Вара эпĕ
тискер кайăкпа çĕр çинчи патшасене тата вĕсен
çарне куртăм. Вĕсене ут çинче Лараканпа тата Унăн
çарĕпе çапăçмашкăн пуçтарнă. [20] Анчах та тискер
кайăка тата ун умĕнче тĕлĕнмелле паллăсем
кăтартакан суя пророка ярса тытрĕç. Çав
тĕлĕнмелле ĕçсене кăтартса вăл тискер кайăкăн
çыру паллине ларттаракансене, тискер кайăк
сăнарне пуççапакансене илĕртсе улталанă. Вара
тискер кайăкпа суя пророка иккĕшне те кӳкĕрт
çунакан вутлă кӳлле чĕрĕллех пăрахрĕç. [21] Ыттисен
вара, вĕсен çарĕнчисен, ут çинче Лараканăн чĕлхи-
çăварĕнчи хĕçпе пĕтмелле пулчĕ. Мĕн пур вĕçен
кайăк вĕсен виллисене тăраниччен сăхрĕ.

### Пин çул

20 Унтан эпĕ тӳперен анакан ангела куртăм.
Унăн аллинче тĕпсĕрлĕх çăраççипе пысăк
сăнчăрччĕ. [2] Вăл хайхи аçтахана, авалхи çĕлене,
ярса илчĕ те пин çуллăха сăнчăрласа лартрĕ, çак
çĕлен – шуйттан, сатана. [3] Пин çул иртмесĕр те
шуйттан халăхсене илĕртсе ан улталатăр тесе,
ангел ăна тĕпсĕрлĕхе пăрахрĕ. Вара питĕрсе илчĕ
те пичет лартрĕ. Пин çул иртсессĕн ăна самантлăха
ирĕке кăлармалла.
[4] Унтан эпĕ престолсене тата вĕсем çинче
ларакансене куртăм. Вĕсене суд тума ирĕк панă.
Эпĕ тата Иисус çинчен, Турă сăмахĕ çинчен
çирĕплетсе пĕлтернĕшĕн пуçĕсене каснă çынсен
чунĕсене куртăм. Вĕсем тискер кайăка та, унăн
сăнарне те пуççапман; çамкисемпе аллисем çине
çыру палли ларттарман. Вĕсем, чĕрĕлсе тăрса,
Христоспа пĕрле пин çул патшара ларчĕç.
[5] Вилнисенчен ыттисем вара пин çул иртмесĕр те
чĕрĕлсе тăмарĕç. Çакă малтанхи хут чĕрĕлсе тăни
пулчĕ. [6] Малтанхи хутĕнчех вилĕмрен чĕрĕлсе тăма
тивĕç пулнисем телейлĕ те сăваплă. Иккĕмĕш
вилĕм вĕсемпе пуç пулаймĕ. Вĕсем, Турăпа
Христосăн священникĕсем пулса, Унпа пĕрле пин
çул патшара ларĕç.

### Шуйттана тĕп туни

[7] Кайран, пин çул иртсессĕн, шуйттана тĕрминчен
кăларĕç. Вăл тĕнчен тăвата кĕтессинчи халăхсене,
Гог тата Магог текенскерсене, илĕртсе улталаса
çӳрĕ, вĕсене вăрçа хатĕрленмешкĕн пĕр çĕре
пуçтарĕ. Вĕсен шучĕ – тинĕс çыранĕнчи хăйăр
пĕрчисем чухлех. [8] Акă вĕсем, пĕтĕм çĕр тăрăх
тухса, сăваплисем тăракан вырăна, Турă юратакан
хулана, çавăрса илчĕç. [9] Анчах та тӳперен, Турă
патĕнчен, вут анчĕ те вĕсене çунтарса ячĕ.
[10] Вĕсене илĕртсе улталанă шуйттана вара кӳкĕрт
çунакан вутлă кӳлле, тискер кайăкпа суя пророка
пăрахнă çĕрех, ывăтрĕç. Вĕсене кунĕн-çĕрĕн, ĕмĕр-
ĕмĕрех асаплантарĕç.

### Суд

[11] Унтан эпĕ пысăк шурă престол тата ун çинче
Ларакана куртăм. Вăл пуртан çĕрпе пĕлĕт те
çухалчĕ: вĕсем валли вырăн юлмарĕ. [12] Вара эпĕ
вилнисем, аслисемпе кĕçĕннисем те, Турă умĕнче
тăнине куртăм. Çавăнтах уçса хунă кĕнекесем
пурччĕ. Пурăнăç кĕнеки те уçăччĕ. Вара вилнисене
кĕнекесенче çырнине кура, кашнинех харпăр-хăй
ĕçне кура, суд турĕç. [13] Тинĕс хăй ăшĕнчи
вилнисене пачĕ, вилĕмпе тамăк та вилнисене
пачĕç, кашнинех ĕçĕсене кура суд турĕç. [14] Вара
вилĕмпе тамăка вутлă кӳлле пăрахрĕç. Çакă
иккĕмĕш вилĕм пулчĕ. [15] Камăн ятне пурăнăç
кĕнекине çырса хуман, çавна вутлă кӳлле пăрахрĕç.

### Çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕр

21 Унтан эпĕ çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕре куртăм,
мĕншĕн тесен ĕлĕкхи тӳпепе çĕр те, тинĕс те
çукчĕ ĕнтĕ. [2] Вара эпĕ, Иоанн, сăваплă хулана –
çĕнĕ Иерусалима – куртăм. Вăл çӳлтен, Турă
патĕнчен анатчĕ. Хăйне, çураçнă хĕре пулас
упăшки валли тирпейлесе тумлантарнă пек,
хатĕрленĕ. [3] Çав самантрах тӳперен çапла калакан
вăйлă сасă илтрĕм: «Акă, Туррăн çынсем хушшинче
пурăнмалли чатăрĕ. Малашне Вăл çынсемпе
пурăнĕ, вĕсем Унăн халăхĕ пулĕç, Вăл вара вĕсен
Турри пулĕ. [4] Турă вĕсен куçĕнчи кирек епле
куççульне те шăлса ярĕ. Текех ĕнтĕ вилĕм те, йĕрӳ-
макăру та, чир-чĕр те пулмĕ, мĕншĕн тесен ĕлĕкхи
йăлтах иртсе кайнă».
[5] Вара престол çинче Ларакан: «Акă, пĕтĕмпех
çĕнни пултаратăп!» – терĕ. Унтан Вăл мана: «Çак
сăмахсем тĕрĕс те чăн, çавăнпа та вĕсене çырса
хур!» – терĕ. [6] «Мĕн пулмалли пулчĕ! – терĕ Вăл
мана. – Эпĕ – Альфа тата Омега, пуçламăшĕ тата
вĕçĕ. Камăн ăшĕ хыпнă, çавна чĕрĕлĕх çăлкуçĕнчен
ахалех ĕçтерĕп. [7] Çĕнтерекен пĕтĕмпех еткерлĕхе
илĕ, вара Эпĕ унăн Турри пулăп, вăл Манăн ывăлăм
пулĕ. [8] Анчах та хăракансем те, шанчăксăррисем те,
ирсĕрсем те, çын вĕлерекенсем те, аскăнсем те,
асамçăсем те, кĕлеткесене пуççапакансемпе мĕн
пур суеç тавраш͏ĕ те хăйсен вырăнне кӳкĕрт
çунакан вутлă кӳлĕре тупĕç. Ку – иккĕмĕш вилĕм».

### Çĕнĕ Иерусалим

[9] Унтан ман патăма юлашки çичĕ инкекпе
тултарнă çичĕ куркаллă ангелсенчен пĕри пычĕ те
çапла каларĕ: «Кил, эпĕ сана Путекĕн çураçнă
хĕрне, çамрăк арăмне, кăтартатăп». [10] Вара вăл

мана Святой Сывлăш витĕмĕпе пысăк та çӳллĕ ту
çине илсе кайрĕ. Ту тăрринчен вăл мана çӳл
тӳперен, Турă патĕнчен анакан сăваплă Иерусалим
хулине кăтартрĕ. 11 Çак хулан Турă мухтавĕ пур. Вăл
хаклă йышши чул пек, витĕр таса пăр евĕрлĕ яспис
пек йăлтăртатса тăратчĕ. 12 Хули тавра вун икĕ
хапхаллă пысăк та çӳллĕ хӳме. Хапхасем çинче –
вун икĕ ангел, кашни хапхи çинех Израилĕн вун
икĕ йăхĕн ятне çырнă. 13 Виçĕ хапхи – хĕвел тухăç
енне, виçĕ хапхи – çурçĕр енне, виçĕ хапхи – кăнтăр
енне, тепĕр виçĕ хапхи хĕвел анăç енне тухать.
14 Хула хӳмисене вун икĕ никĕс çине туса лартнă,
кашни никĕсĕ çинех Путекĕн вун икĕ апостолĕн
ятне çырнă.
15 Манпа калаçакан ангелăн хулапа хапхисене,
хӳмине виçмешкĕн ылтăн туя пурччĕ. 16 Хули
тăваткĕтеслĕх евĕр, унăн урлăш-тăршшĕ пĕрех.
Ангел хулана туйипе виçсе тухрĕ те, пурĕ вун икĕ
пин çуррă çухрăма яхăн пулчĕ. Унăн тăршшĕ те,
сарлакăшĕ те, çӳллĕшĕ те пĕрешкелех. 17 Унтан
ангел хула хӳмине этем виçипе виçрĕ те, пурĕ çĕр
хĕрĕх тăватă чике пулчĕ. Ангел виçи этем виçи
пекехчĕ. 18 Хӳмине ясписран купаланă, хулине вара
– витĕр курăнакан кĕленче пек таса ылтăнран.
19 Хӳме никĕсĕсене тĕрлĕ хаклă йышши чулсемпе
илемлетнĕ. Пĕрремĕш никĕсĕ – яспис, иккĕмĕшĕ –
сапфир, виççĕмĕшĕ – халкидон, тăваттăмĕшĕ –
смарагд, 20 пиллĕкмĕшĕ – сардоникс, улттăмĕшĕ –
сердолик, çиччĕмĕшĕ – хризолит, саккăрмĕшĕ –
вирилл, тăххăрмĕшĕ – топаз, вуннăмĕшĕ –
хризопрас, вун пĕрмĕшĕ – гиацинт, вун иккĕмĕшĕ
аметист текен чул. 21 Вун икĕ хапхи – вун икĕ ĕнчĕ.
Кашни хапхине пĕр ĕнчĕрен тунă. Хула урамĕ –
витĕр курăнакан кĕленче пек таса ылтăнран.
22 Хулара эпĕ Турă Çуртне курмарăм, мĕншĕн
тесен çак хулашăн Турă Çурчĕ – Пурне те тытса
тăракан Хуçа Турăпа Путек. 23 Хулана çутатмашкăн
хĕвел те, уйăх та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен ăна Турă
мухтавĕ çутатать, унăн çутаткăçĕ – Путек. 24 Çăлăннă
халăхсем çак çутăра çӳрĕç, патшасем хăйсен çĕр
çинчи мухтавĕпе чапне унта илсе пырĕç. 25 Хула
хапхисене кăнтăрла питĕрмĕç, каç вара унта
пулмасть. 26 Халăхсем унта мухтавĕпе чапне илсе
пырĕç. 27 Хулана таса марри нимĕн те кĕреймĕ,
ирсĕрлĕхпе суялăха парăннисем те нихăшĕ те
кĕреймĕç. Путекĕн пурăнăç кĕнекине çырса
хунисем кăна унта кĕрейĕç.

## Чĕрĕлĕх шывĕ

22 Унтан вара ангел мана чĕрĕлĕх шывĕн юхан
шывне кăтартрĕ. Юхан шывĕ, Турăпа Путек
престолĕ патĕнчен юхса тухса, витĕр курăнакан
пăр пек йăлтăртатать. 2 Малалла çав юхан шыв хула
витĕр юхать. Шыв икĕ енĕпе те пурăнăç
йывăççисем ӳсеççĕ. Çулталăкра вĕсем вун икĕ хут
çимĕç параççĕ. Кашни йывăççи уйăхра пĕрре çимĕç
парать, йывăç çулçисем – халăхсене сиплемешкĕн.
3 Хулара ĕнтĕ тек ылханли нимĕн те пулмĕ. Унта
Турăпа Путекĕн престолĕ ларĕ, Унăн чурисем Ăна
пуççапса пурăнĕç. 4 Вара вĕсем Унăн сăнне курĕç,
çамкисем çинче Унăн ячĕ пулĕ. 5 Унта ĕнтĕ каç та
пулмĕ, хĕвел çути те, çутаткăç çути те кирлĕ пулмĕ,
мĕншĕн тесен Хуçа Турă вĕсене çутатĕ. Вĕсем,
патшасем пек, ĕмĕр-ĕмĕр хуçаланĕç.

## Христос килесси

6 Унтан мана ангел: «Çак сăмахсем тĕрĕс те чăн.
Малашлăхра часах мĕн пуласси́не Хăйĕн чурисене
пĕлтермешкĕн сăваплă пророксен Хуçа Турри
Хăйĕн ангелне ячĕ», – терĕ. 7 «Акă, Эпĕ часах пырăп.
Çак кĕнекери пророкла сăмахсене тытса пурăнакан
телейлĕ!» 8 Эпĕ, Иоанн, çакна йăлтах куртăм та,
илтрĕм те. Вара, курнă-илтнĕ хыççăн, хама çакна
йăлтах кăтартакан ангела пуççапмашкăн ун ури
умне ӳкрĕм. 9 Анчах та вăл мана: «Асту, кунашкал
ан хăтлан, – терĕ. – Эпĕ сан пекех, санăн пророк
тăванусем пекех, çак кĕнекери сăмахсене тытса
пыракансем пекех, Турă чури кăна. Турра пуççап!»
10 Тата вăл мана: «Çак кĕнекери пророкла
сăмахсене пытарса, пичет хурса ан усра, мĕншĕн
тесен вăхăт çывăх ĕнтĕ, – терĕ. 11 – Тӳрĕ мар çын
усал тусах пурăнтăр, ирсĕрри татах ирсĕрлентĕр.
Тӳрĕ çын ырă тусах пурăнтăр, сăваплi тата
сăваплăрах пултăр».
12 «Акă, Эпĕ часах пырăп. Кашнинех харпăр-хăй
ĕçĕшĕн тавăрса памашкăн тавăрăвăм Хампа
пĕрлех. 13 Эпĕ – Альфа тата Омега, пуçламăшĕ тата
вĕçĕ, Малтанхи тата Кайранхи».
14 Унăн пил-хушăвĕсене тытса пыракансем
телейлĕ. Пурăнăç йывăççи те вĕсемшĕн пулĕ,
хулана хапхаран кĕме те вĕсем тивĕçлĕ пулĕç.
15 Усал йытăсемпе тухатмăшсем, аскăнсемпе çын
вĕлерекенсем, кĕлеткесене пуççапакансем,
тĕрĕсмарлăха юратса тĕрĕс мар пурăнакансем вара
тулашĕнче юлĕç.
16 «Эпĕ, Иисус, сире çакна чиркӳсенче çирĕплетсе
пĕлтермешкĕн Хамăн ангелăма ятăм. Эпĕ – Давид
ăрăвĕн никĕсĕ тата тăхăмĕ, ирхи çутă çăлтăр».
17 «Килсем!» – теççĕ Сывлăш та, Путекĕн çураçнă
хĕрĕ те. «Килсем!» – тетĕр çакна итлекенĕ те. Ăш
хыпни те, кăмăл тăваканни те килсе чĕрĕлĕх
шывне ахалех илтĕр.
18 Çак кĕнекери пророкла сăмахсене итлекен
кашни çыннах эпĕ те çирĕплетсе калатăп: кам та
кам çак сăмахсем çумне урăххи хушать, Турă ун
çине çак кĕнекере çырса кăтартнă инкексене ярать.
19 Кам та кам çак кĕнекери пророкла сăмахсенчен
хăшне те пулин кăларса пăрахать, Турă ăна пурăнăç
кĕнекине те, сăваплă хулана та – вĕсем пирки çак
кĕнекере çырнă – кĕртмĕ.
20 Çакăн çинчен çирĕплетсе Пĕлтерекен калать:
«Ĕнтĕ часах пырăп!» Аминь. Килсемччĕ, Иисус
Хуçамăр!
21 Сире пурсăра та Иисус Христос Хуçамăрăн
тивлечĕ пултăр. Аминь.